ЧĂВАШ ТĔНЧИ • XX–XXI • ЧУВАШСКИЙ МИР

Шупашкар • 2017 • Чебоксары

ЧӐВАШ ПАТШАЛӐХ ГУМАНИТАРИ ӐСЛӐЛӐХӖСЕН ИНСТИТУЧӖ
ЧӐВАШ НАЦИ КОНГРЕСӖ

# ЧӐВАШ НАЦИ КОНГРЕСӖ

## 1992–2017

## Документсемпе материалсем

Шупашкар
2017

ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ ГУМАНИТАРНЫХ НАУК
ЧУВАШСКИЙ НАЦИОНАЛЬНЫЙ КОНГРЕСС

# ЧУВАШСКИЙ НАЦИОНАЛЬНЫЙ КОНГРЕСС

## 1992–2017

Документы и материалы

Чебоксары
2017

УДК 323/324 (470.344)
ББК 66.3 (2 Рос.Чув.), 5
Ч - 32

Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн йышăнăвĕпе пичетленет

**А.П. Леонтьев** пухса хатĕрленĕ

Редакци канашĕ
**Н.Ф. Угаслов** (председатель),
**В.А. Иванов, В.П. Иванов, П.В. Ивантаев, В.Л. Клементьев, П.С. Краснов,**
**А.П. Леонтьев** (председатель çумĕ), **Н.Е. Лукианов,**
**А.А. Трофимов** (председатель çумĕ), **А.П. Хусанкай, З.А. Яковлева**

Пĕтĕмĕшле редакци
**В.П. Иванов**, истори наукисен докторĕ
**А.П. Хусанкай**, филологи наукисен кандидачĕ

Рецензентсем
**Н.И. Егоров**, филологи наукисен докторĕ
**А.И. Кибеч**, педагогика наукисен кандидачĕ
**В.П. Никитин (Станьял)**, филологи наукисен кандидачĕ
**В.Г. Родионов**, филологи наукисен докторĕ

# Чăваш наци конгресĕ: 1992–2017

Документсемпе материалсем. – Шупашкар, «Free poetry» изд-во, 2017. – 374 с. Илл.

Кăларăмра – Чăваш наци конгресĕн 25 çул тăршшĕнчи ĕç-хĕлне туллин те анлăн, уççăн çутатакан документсемпе материалсем: кашни Аслă пуху, унăн Мăн Канашĕпе Президиумĕ çинчен каласа кăтартни, делегатсен сĕнĕвĕсемпе шухăшĕсем, ЧНК ертӳçисенчен илнĕ интервьюсем, вĕсен статйисем, Чăваш Республикин ертӳçисен Конгресс мероприятийĕсенчи сăмахĕсем, общество пĕрлĕхĕн тĕрлĕ вăхăтри уставĕсен тексчĕсем, Аслă пухусемпе Мăн Канаш, Президиум йышăннă декларацисемпе резолюцисем, чĕнсе каланисем тата ытти документ. Вĕсене хронологи йĕркипе вырнаçтарнă.

Кĕнеке сăн ӳкерчĕксенчен пуян.

Кăларăмăн электрон версийĕ те пур.

Этнологсемпе историксем, политологсем, культурологсем, журналистсем, аслă тата вăтам вĕренӳ заведенийĕсен студенчĕсемпе аспиранчĕсем, обществăн тĕрлĕ сийĕ валли.

© Чăваш наци конгресĕ, 2017
© А.П. Леонтьев, пухса йĕркелӳ, ум сăмах, 2017

УДК 323/324 (470.344)
ББК 66.3 (2 Рос.Чув.), 5
Ч – 32

Издается по решению Президиума Чувашского национального конгресса
Составитель **А.П. Леонтьев**

Редакционный совет
**Н.Ф. Угаслов** (председатель),
**В.А. Иванов, В.П. Иванов, П.В. Ивантаев, В.Л. Клементьев, П.С. Краснов,**
**А.П. Леонтьев** (заместитель председателя),
**Н.Е. Лукианов, А.А. Трофимов** (заместитель председателя), **А.П. Хузангай, З.А. Яковлева**

Общая редакция
**В.П. Иванов**, доктор исторических наук
**А.П. Хузангай**, кандидат филологических наук

Рецензенты
**Н.И. Егоров**, доктор филологических наук
**А.И. Кибеч**, кандидат педагогических наук
**В.П. Никитин (Станьял)**, кандидат филологических наук
**В.Г. Родионов**, доктор филологических наук

# Чувашский национальный конгресс: 1992–2017

Документы и материалы. – Чебоксары: изд-во «Free poetry», 2017. – 374 с. Илл.

В сборнике – документы и материалы, освещающие масштабно и широко, объективно деятельность Чувашского национального конгресса в течение 25 лет: предсъездовские дискуссионные материалы, отчеты о работе съездов, Большого Совета, Президиума ЧНК, отклики и пожелания делегатов форумов, интервью и статьи руководителей и активистов Конгресса, выступления руководителей Чувашской Республики на мероприятиях ЧНК, тексты уставов общественной организации, декларации, резолюции, обращения съездов и форумов Большого совета, Президиума ЧНК и др. документы. Они размещены в хронологическом порядке.

Сборник богат фотоиллюстрациями.

Прилагается электронная версия книги.

Адресован этнологам, историкам, политологам, культурологам, журналистам, студентам высших и средне-специальных учебных заведений, аспирантам, широкой общественности.

© Чувашский национальный конгресс, 2017
© А.П. Леонтьев, составление , предисловие, 2017

Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр!

*Петӗр Хусанкай*

Были мы, и есть, и будем!

# ЧӐВАШ НАЦИ КОНГРЕСӖН ГИМНӖ

Алран кайми аки-сухи!
Асран кайми атти-анни!
Турӑран-Пӳлӗхрен асли çук,
Атте-аннинчен пахи çук.

Плуг-соха вечно в руках!
Отец-мать вечно в памяти!
Старше Бога нет никого,
Дороже отца-матери нет никого.

Алран кайми аки-сухи!
Асран кайми атти-анни!
Аки-сухинчен уйрӑлас çук,
Атти-аннине манас çук.

Плуг-соха вечно в руках!
Отец-мать вечно в памяти!
С плугом-сохой не расстаться,
Отца-мать не забыть никогда.

Асран кайми пӗлӗш-тантӑш!
Пуринчен пахи ял-йыш, пускил!
Ай ӗçер-и, ай çиер-и,
Виличчен пӗрле пурнар-и?

Знакомые-ровесники вечно в памяти!
Всего дороже односельчане-соседи!
Не выпить ли нам, не поесть ли,
До самой смерти вместе не пожить ли?

# Конгресс çинчен сăмахăм



Николай
УГАСЛОВ

Чăваш наци конгресĕн президенчĕ,
Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ,
Чăваш Республикин тата Тутарстан Республикин
культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ,
Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ

Совет çĕр-шывĕ «ытамлайми» пысăкчĕ, статистика унти чĕлхесен шутне те пĕлмен имĕш. «Шутласа кăларайми» йышлă халăхлă патшалăхра пĕр халăх гегемонийĕ пулнă; çав халăх чи талантлă, чи аслă тата чи пуян чĕлхеллĕ шутланнă. Кĕçех, коммунизм çĕнтерсенех, пурин те çав чĕлхепе калаçма пуçламалла тенĕ. Анчах та «çутă пуласлăх» уçăлнă-çĕкленнĕ тапхăрта, наци политикин çĕнтерĕвĕ пирки пĕр иккĕленмесĕр пĕтĕмлетнĕ чухне, «вак» халăхсен чĕлхипе вĕрентекен шкулсене хупнă, сĕм авалтан сыхланса юлнă пархатарлă йăла-йĕркене пăрахăçа кăларттарнă. Пĕр енчен, çапла тума центр политики хистесех тăнă, тепĕр енчен вара – вăл е ку халăхăн пĕр пайĕ хăйĕн нацилĕхне пытарма тăрăшнă. Халăхсем хăйсене хăйсем пĕтересси вăйлансах пынă.

Çĕнĕ самана пуçлансан (XX–XXI ĕмĕрсен чикки), çĕнĕ Раççей Федерацийĕ туса хурсан – патшалăх тытăмĕ енĕпе те, политикăпа идеологире те, экономикăпа социаллă тытăм тĕлĕшпе те, çавăн пекех нацисен хутшăнăвĕсем енĕпе те – çĕр-шывра Чăваш наци конгресĕ çуралмалли условисем йĕркеленеççĕ.

Конгресс – кăткăс ăнлав: хăш-пĕр патшалăхра вăл парламент е политика партийĕн ячĕ, е тĕнчери организацисен чи аслă органĕ, кунсăр пуçне тата – аслă пуху (съезд), тĕнче пĕлтерĕшлĕ канашлу.

Хăйĕн тытăмĕпе тата йĕркеленĕвĕпе ЧНК юлашки ăнлавсене çывăх. Унăн политика функцийĕсем çук. Наци идеологийĕнче вара вăл халăхăмăра сыхласа хăварас тата аталантарас ĕçри тĕп вăйсенчен пĕри.

XX ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсен вĕçĕнче – 90-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче Раççей Федерацийĕнче обществăра çĕнĕ улшăнусен процесĕ пуçланнă, наци ыйтăвĕсене татса парас ĕçре демократизаци элеменчĕсене уямани те тĕл пулнă – хăш-пĕр çĕрте вĕсем пач урăх çул-йĕрпе кайнă, юнлă хирĕçÿ патне çес мар, чăн-чăн вăрçă патне те илсе çитернĕ.

Нацисен хутшăнăвĕсене йĕркелес тĕллевпе Раççей Федерацийĕнче тивĕçлĕ документсем йышăннă. Вĕсенчен тĕпри – «Наци-культура автономийĕ çинчен» саккун (1996 ç. çĕртме), Раççей Федерацийĕн Патшалăх наци политикин 2025 çулчченхи тапхăрти стратегийĕ.

Анчах маларах ăнланмалла марри те пулкаланă. 1996 çулта РФ Патшалăх Думин Геополитика ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕ çĕр-шыв регионĕсене «Вырăс идейи Раççей саккунĕсен чĕлхипе (Геополитикăпа наци хăрушсăрлăхĕн концепцийĕ)» парламент итлевĕн сĕнĕвĕсене ярса панă. Унта хăрушлăх кăларса тăратакан шухăшсем те пулнă, çав сĕнÿсемпе никĕсленсе саккун йышăнни вара субъектсенче те, Раççейре пĕтĕмĕшле хăйĕнче те нацисен хушшинчи хутшăнусене кăткăслатса яма пултарнă. Тĕслĕхрен, Концепцире çакна палăртнă: XXI ĕмĕре кĕрес умĕн вырăс халăхĕ «хăйĕн патшалăхĕсĕр тата наци идейисĕр». Çавна май ыйту тухса тăрать: патшалăхра – Раççей Федерацийĕнче – вырăссен уйрăм патшалăхĕ пулма пултарать-и вара? Пулма пултарать тĕк – унччен автономи пулнă республикăсен мĕн тумалла? Ара, вĕсем пурте тенĕ пекех хăйсен суверенитечĕ çинчен деклараци йышăннă, эппин, никама пăхăнман патшалăх тăвас тĕллевлĕ?

Наци проблемисемпе, наци политикипе федераци шайĕнче йышăннă

# Слово о Конгрессе

Советская страна была «необъятной», статистика не знала, сколько всего языков в ней. В государстве с «бесчисленным множеством» национальностей существовала гегемония одного народа, выступавшего как самый талантливый, великий, обладающий самым богатым языком. И ожидалось, что скоро, с победой коммунизма, на этом языке будут говорить все. Однако в годы строительства «светлого будущего», когда со всех трибун провозглашалось торжество национальной политики, закрывались школы с преподаванием родного языка «малых» народов, находились в запрете сохранившиеся с древнейших времен обычаи и обряды. С одной стороны, это было связано с централизованной политикой, насаждаемой сверху, а с другой – часть населения сама скрывала свою принадлежность к какой-либо национальности. Шел процесс самоуничтожения.

Начало новой эпохи на рубеже XX–XXI вв., образование Российской Федерации – многонациональной страны – как в государственной структуре, политике, идеологии, экономике, социальном строе, так и в межнациональных отношениях, обусловили рождение Чувашского национального конгресса.

Конгресс – понятие сложное: в некоторых государствах он является названием парламента, политических партий, высшим органом международных организаций, а также означает съезд, совещание международного характера.

По своей форме и структуре Чувашский национальный конгресс стоит ближе к последней дефиниции. Он не включает в себя функцию политики, однако в национальной идеологии выступает одной из главных сил в сохранении и развитии народа.

В конце 80 – начале 90-х гг. XX века в Российской Федерации начинается процесс новых изменений в обществе, в проблемах национального и их решении не всегда проявлялись элементы демократизации – кое-где они оказались в совершенно ином русле развития, сопровождающемся вооруженными конфликтами и полномасштабной войной.

В целях регулирования межнациональных отношений в Российской Федерации принят ряд документов. Среди них основные – закон «О национально-культурной автономии» (июнь 1996 г.) и Стратегия государственной национальной политики Российской Федерации на период до 2025 года.

В 1996 г. Комитет по вопросам геополитики Государственной думы РФ разослал в регионы страны рекомендации парламентских слушаний по теме «Русская идея на языке законов России (Концепция геополитической и национальной безопасности)». В них содержалось немало выражений, которые носили опасный характер, а претворение законопроекта в жизнь в преподнесенной форме могло бы осложнить межнациональные отношения как в субъектах, так и в Российской Федерации в целом. Так, в Концепции отмечалось, что на пороге XXI в. русский народ оказался «без собственного государства и национальной идеи». В связи с этим возникал вопрос: может ли быть в государстве – Российской Федерации – отдельное русское государство? Если да, то как быть с бывшими автономными республиками, которые провозгласили декларации о суверенитете, то есть объявили себя независимыми государствами?

Федеральные документы по проблемам национальной политики не раз обсуждались в Чувашском государственном институте гуманитарных

документсене Чăваш пашалăх гуманитари институтĕнче пĕрре мар сÿтсе явнă. Дискуссисене РФ Президенчĕн Чăваш Енри полномочиллĕ представителĕн аппарачĕн, РФ Национальноçсен ĕçĕсемпе федераци хутшăнăвĕсен министерствин Атăлçи регион территори пайĕн, ЧР Культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерствин специалисчĕсем тата, паллах, Чăваш наци конгресĕн ертÿлĕхĕпе активĕ хутшăннă.

Чăваш Енре наци проблемисене татса пама витĕм кÿрекен, пулăшакан тĕп документ хальхи вăхăтра – Раççей Федерацийĕн Патшалăх наци политикин 2025 çулччченхи тапхăрти стратегине Чăваш Республикинче 2014–2020 çулсенче реализацилемелли мероприятисен регион планĕ. Унăн тĕп тĕллевĕ чăваш халăхĕпе Чăваш Енре пурăнакан ытти наци çыннисене килĕшÿлĕхре пурăнмалли, вĕсен культурисене аталантарса пымалли лару-тăру туса хурасси, çавăн пекех Чăваш Республикин патшалăхлăхне тата федераци хутшăнăвĕсене çирĕплетесси.

Историри тĕрлĕ сăлтава пула чăваш этносĕн çурри Чăваш Ен тулашĕнче пурăнать. Евразин географи вĕççĕр-хĕрсĕр анлăшĕнче ушкăнăн-ушкăнăн тĕпленнĕ диаспорăсен тытăмĕ те кăткăс. Пĕрремĕшĕнчен, вĕсем – тĕрлĕ халăхсемпе национальноççемлĕ тĕрлĕ регионсенче, иккĕмĕшĕнчен – тĕн тĕлĕшĕнчи тĕнче ăнланăвĕпе те пĕрешкел мар. Тепĕр кăткăслăх – халăхăмăр сапаланса пурăнни, диаспорăсен Чăваш Республикипе тачă çыхăнусем çукки е вăйсăрри наци культурине аталантармашкăн йывăрлăхсем кăларса тăратаççĕ.

Республикăмăрта та çивĕч ыйту нумай. Унăн титул нацийĕ этнографин виçĕ ушкăнĕнчен тăрать [анатри, анат енчи, вирьял (е тури)]. Вĕсен хушшинче чĕлхе енĕпе те, культурăн ытти формисенче те чарăнми эволюци куратпăр, çак аталану пĕр тикĕс пулса пымасть. Халăхăн этнографи тĕрлĕлĕхĕ пуянлăх шутланать пек, этикăпа эстетика тĕлĕшĕнчен çав тери паха темелле. Анчах çак хаклăхсенчен нумайăшĕ, шел те, паян малалла аталанаймасть.

XXI ĕмĕрĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче, çĕнĕ вăхăтра – çĕнĕ Раççейре Чăваш наци конгресĕн хăйĕн выранĕ пур. Вăл идеологи, этика, эстетика енĕпе пархатарлă тĕслĕх кăтартать, йĕркеллĕ аталанать, Раççей Федерацийĕнчи тата Еврази патшалăхĕсенчи чăваш наци-культура автономийĕсемпе (пĕрлешĕвĕсемпе, ушкăнĕсемпе) ырă çыхăнусем йĕркелет. Чăваш пĕрлĕхĕсем паян çĕр ытла. Автономисене тытăмлас ĕçре ЧНКн ман умĕн ĕçленĕ президенчĕсен Атнер Петрович Хусанкайпа Геннадий Николаевич Архиповăн, пирĕн организацин нумай пинлĕ активĕн тÿпи хаклама çук пысăк. Çакна эпир кĕнекери нумай статья-интервьюра, документра яр-уççăн куратпăр.

Хальхи вăхăтра чăваш диаспорисенчи пĕрлĕхсем пурте тенĕ пекех ЧНКпа тачă çыхăну тытаççĕ. Манăн шухăшăмпа (унпа Мăн Канашри тата Президиумри ĕçтешĕмсем те килĕшеççĕ) – чăваш чĕлхипе культурине аталантарас, çирĕплетес тĕллевпе республика тулашĕнчи йăхташăмăрсемпе нихçанхинчен те анлăрах, тачăрах хутшăнса ĕçлемелле. Шăпах ЧНК çак çул-çĕрпе çирĕппĕн утать. Çак çулла «Мурманскран – Байкал таран» культурологи акцине мĕн таран çыпăçуллăн та чаплăн йĕркелерĕмĕр! Черетпе – Çĕпĕрти темиçе регионта Акатуй иртрĕ, чи чапли вара – Байкал кÿлли хĕрринче. ЧНК политика тулашĕнче тетпĕр пулин те – Шупашкартан пин-пин çухрăм инçетри йăхташăмăрсем патĕнчи тĕл пулусемпе уявсем, чуна уçса калаçнисем политикăпа çыхăннă нумай акцирен усăллăрах та кирлĕрех. Шăпах çапла майпа эпир тăван халăхăмăрăн чĕлхипе ăс-пурлăхне сыхласа хăваратпăр, аталантаратпăр.

Çак кĕнекери çĕр-çĕр документпа материал пурнăçланман ĕмĕтшанчăкшăн кулянтараççĕ те пăшăрхантараççĕ, çакăнпа пĕрлех хамăр халăхшăн, унăн Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчи, урăх çĕр-шывсенчи чаплă та пултаруллă ывăл-хĕрĕшĕн савăнмалли-мăнаçланмалли те çителĕклех. Вĕсемшĕн Чăваш наци конгресĕ халăхăмăра пĕрлештерекен тĕп центр пулнă, ÿлĕм те çаплах пулса юлĕ. Пирĕн Конгресс вăл – тăванлăх, чăвашлăх текен сăвапла ăнлавсен тĕвви.

наук совместно со специалистами аппарата полномочного представителя Президента РФ в Чувашской Республике, территориального отдела Поволжского региона Министерства РФ по делам национальностей и федеративным отношениям, Министерства культуры и по делам национальностей ЧР и, конечно, с руководством ЧНК.

Решение национальных проблем в Чувашии осуществляется прежде всего в соответствии с такими документами, как «Концепция государственной национальной политики Чувашской Республики» и региональный План мероприятий по реализации в 2014–2020 годах в Чувашской Республике Стратегии государственной национальной политики Российской Федерации на период до 2025 года. Их цель – обеспечение межнационального согласия и сотрудничества, сохранение и развитие культур чувашского народа и других национальностей, проживающих в Чувашии, а также укрепление государственности Чувашской Республики и дальнейшее развитие федеративных отношений.

Больше половины представителей чувашского этноса волею исторических судеб оказалось за пределами Чувашской Республики. Сложна структура и самих диаспор, расселенных в огромном евразийском пространстве. С одной стороны, они входят в разные регионы с различными народами и национальностями, с другой – разнообразен их состав в сфере религиозного миропонимания. В то же время разобщенность, отсутствие или слабость тесных связей с Чувашской Республикой порождают немалые трудности на пути развития общей национальной культуры народа.

Большие проблемы существуют и в республике. Ее титульная нация вследствие исторической обусловленности сформировалась из трех этнографических групп (низовые, средненизовые и верховые). Между ними как в языковом отношении, так и в других формах культуры идет непрерывная эволюция, и развитие это неравномерное. Казалось бы, существование у народа разных этнографических форм является его богатством, но многие ценности, к сожалению, не получают сегодня своего развития.

В первой четверти XXI в., в Новое время в новой России Чувашский национальный конгресс, показывая высокий идеологический, этический, эстетический пример, стабильно развивается, находит гуманные связи с чувашскими национально-культурными автономиями (объединениями, обществами) РФ и стран Евразии. Их в настоящее время насчитывается более ста. В формировании автономий большая заслуга моих предшественников – президентов ЧНК в разные периоды – Атнера Петровича Хузангая и Геннадия Николаевича Архипова, многотысячного актива нашей организации. Об этом ярко свидетельствуют многие статьи, интервью, документы данной книги.

В настоящее время абсолютное большинство чувашских диаспоральных образований тесно сотрудничает с ЧНК. На мой взгляд (и его разделяют мои соратники в Большом совете и Президиуме Конгресса), в современных условиях в целях развития и укрепления чувашского языка и культуры, как никогда, необходимо расширить связи с соплеменниками, проживающими за пределами республики. Именно ЧНК ведет активную работу в этом направлении. Как великолепно и слаженно мы организовали этим летом культурологическую акцию «От Мурманска до Байкала»! Поочередно в нескольких регионах Сибири состоялся Акатуй, апофеозом стал праздник на берегу Байкала. Хотя мы и утверждаем, что ЧНК вне политики, однако встречи и праздники, душевные разговоры с соплеменниками за тысячи километров от Чебоксар эффективней многих политических акций. Уверен: тем самым мы сохраняем и развиваем культуру нашего народа и родной язык.

В сотнях материалов и документов данной книги – не только боль и печаль, страдания и разочарования из-за несбывшихся надежд, но и гордость за свой народ, за его выдающихся сыновей и дочерей, живущих в разных регионах России и других государствах. А для них Чувашский национальный конгресс всегда был и будет главной объединяющей силой. Конгресс это – средоточие всего, что составляет содержание таких понятий, как тăванлăх, чăвашлăх, т.е. родство, чувашскость.

# Хамăрăн ятпа, чĕлхепе…



Атнер
ХУСАНКАЙ

ЧНК пĕрремĕш президенчĕ (1992–1997),
халĕ хисеплĕ президенчĕ

…Çирĕм пилĕк хыçа тăрса юлчĕ, анчах ку тинтерех кăна пулса иртнĕн туйăнать. Унтанпа шыв нумай юхрĕ, тĕрлĕ пулăм савăнтарчĕ те кулянтарчĕ...

Çĕр-шывра улшăнусен çилĕ вĕретчĕ. Çĕнелӳ варкăшĕ теттĕмĕр. Чăваш наци конгресĕ шăпах çав вăхăтра çуралчĕ. Ку тапхăр – чăваш нацийĕн хăй тĕллĕнлĕх правине ирĕклĕн пурнăçа кĕртме, политикăра, экономикăра тата этнокультура-чĕлхе енĕпе харкам çул-йĕрпе аталанма шанчăк паракан çулсемччĕ. Çакна валли тивĕçлĕ никĕслев пурччĕ: уççăнлăх, демократи, федерализм, çĕр-шыври халăхсен чăн-чăн пĕр танлăхĕ пур çĕрте те сарăлса-çирĕпленсе пыратчĕç пек. Çав тапхăрта чăваш нацийĕн чи çивĕч ыйтăвĕсене тата малашлăх проекчĕсене уççăн та ирĕклĕн сӳтсе яваттăмăр.

ЧНК статусне – «Чăваш халăхĕн представителĕсен аслă пухăвĕ» – 1992 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче палăртса хăварнă. ЧНК хăйĕн ĕç-хĕлне малтанхи кунсенченех çак документсене тĕпе хурса тытса пынă: Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн пĕтĕм тĕнче йышăннă уйăрайми тата гарантилекен право акчĕсем (Этем прависен пĕтĕмĕшле декларацийĕ, Экономика прависем, социаллă правасемпе культура прависем çинчен калакан пĕтĕм тĕнчери пакт, Граждан тата политика прависем çинчен калакан  пĕтĕм тĕнчери пакт, Аталану прави çинчен калакан деклараци), Европăн Хăрушсăрлăхпа килĕштерсе ĕçлессин канашлăвĕн пĕтĕмлетӳ акчĕ, Европăри патшалăхсен элчисен – хăрушсăрлăхпа килĕштерсе ĕçлекен организаци хутшăннисен Венăри тĕл пулăвĕн пĕтĕмлетӳ документĕ, çĕнĕ Европăн Парижри хартийĕ (мĕн пур халăхăн хăй тĕллĕнлĕх прави тата «хăйĕн шалти тата тулашри политика статусне ютран хутшăннине пăхăнмасăр, ирĕклĕх условийĕсенче кирек хăçан та хăйсем пĕлнĕ пек палăртмалли» право). ЧНК – «обществăн чăваш халăхне çĕнĕрен çĕклес-чĕртес тата аталантарас, консолидацилес тĕллевпе ĕçлекен, чăваш нацийĕн пултарулăх, интеллект тата культура потенциалне пĕрлештерекен организацийĕ».

Çав тапхăрта коммунизм идеологийĕ арканатчĕ, социополитикăн çĕнĕ лару-тăрăвĕнче çĕнĕ тĕллевсем палăртса   халăх умне кăларас ыйту çивĕч тăратчĕ. Вĕсене Конгресăн никĕсри çак докуменчĕсенче уçса панă: «Чăваш халăхĕн наци чĕрĕлĕвĕ çинчен» деклараци, «Чăваш Республикин патшалăх суверенитечĕ çинчен» резолюци, «Чăваш Республикин Конституцийĕ (Тĕп Саккунĕ) çинчен», «Чăваш Республикин «Гражданлăх çинчен» саккунĕн принципĕсем çинчен» резолюцисем. Конгресс Чăваш Республикин политика статусĕ тĕлĕшпе хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ. Унăн тĕп никĕсĕ: Чăваш Республики – чăваш халăхĕн пĕртен пĕр наципатшалăх пĕрлĕхĕ; çав вăхăтрах чăваш тĕнчи пур, шăпа пӳрнĕрен пин-пин йăхташăмăр Раççей Федерацийĕн мĕн пур субъекчĕнче тенĕ пекех сапаланса пурăнать (Калининградран пуçласа Сахалин таран), уйрăмах йышлăн – Уралпа Атăл тăрăхĕнче. ЧНК чăваш халăхне историн пысăк-анлă Вăхăтĕнче туллин кăтартрĕ, паянхи чăваш патшалăхлăхĕ Атăлçи Пăлхар патшалăхĕн (IX–XII) тăсăмĕ пулнине палăртрĕ. Чăвашсем – Тухăç Европăри хăйсен патшалăхлăхĕллĕ малтанхи, тĕрĕк çемйинчи чи авалхи тата хăйне евĕрлĕ халăхсенчен пĕри. Конгресс пуçарăвĕпе 1995 çулта Атăлçи Пăлхар патшалăхĕ 1100 çул тата Чăваш автономийĕ 75 çул тултарнине анлăн палăртрăмăр.

# Со своим именем и языком…

…Двадцать пять лет прошло, а кажется, что было вчера. Много воды утекло с тех пор, произошло много событий. В стране дул ветер перемен… Чувашский национальный конгресс родился именно в то время – время надежд на свободную реализацию права чувашской нации на самоопределение, самостоятельное политическое, экономическое и этнокультурно-языковое развитие. Для этого были свои предпосылки: гласность, демократия, федерализм, подлинное равенство народов страны как будто распространялось и утверждалось повсеместно. Это было время открытого обсуждения актуальных проблем настоящего и проектов на будущее чувашской нации. Статус ЧНК был определен 8 октября 1992 г. как «высшее представительное собрание чувашской нации». ЧНК изначально опирался на неотъемлемое и гарантированное международными правовыми актами ООН (Всеобщая декларация прав человека, Международный пакт о экономических, социальных и культурных правах, Международный пакт о гражданских и политических правах, Декларация о праве на развитие), Заключительным актом СБСЕ, Итоговым документом Венской встречи представителей государств – участников СБСЕ, Парижской хартией для новой Европы (право всех народов на самоопределение и право «в условиях полной свободы определять, когда и как они желают, свой внутренний и внешний политический статус без вмешательства извне»). ЧНК – «общественная организация, действующая во имя возрождения, развития и консолидации чувашского народа, объединяющая творческий, интеллектуальный и культурный потенциал чувашской нации».

В то время происходило крушение коммунистической идеологии, и в новой социально-политической ситуации нужно было вырабатывать и выставлять новые ориентиры. Они были сформулированы в таких базовых документах Конгресса, как декларация «О национальном возрождении чувашского народа», резолюции «О государственном суверенитете Чувашской Республики», «О концепции Конституции (Основного Закона) Чувашской Республики», «О принципах закона Чувашской Республики «О гражданстве». Конгресс выразил свое отношение к  изменению политического статуса Чувашской Республики, которая является единственным национально-государственным образованием чувашского народа. В то же время существует чувашский мир, тысячи и тысячи наших соплеменников волею судеб проживают практически во всех субъектах Российской Федерации (от Калининграда до Сахалина), особенно компактно в Урало-Поволжье. ЧНК старался представить  чувашский народ в большом Времени истории, обозначил преемственность чувашской государственности относительно Волжской Булгарии (IX–XIII вв.). Чуваши – один из первых народов Восточной Европы со своей государственностью, один их древнейших и самобытных народов тюркской семьи. По его инициативе в 1995 г. широко отмечалось 1100-летие Волжской Булгарии и 75-летие Чувашской автономии.

ЧНК твердо следовал лозунгу «За вашу и нашу свободу!» и старался поддерживать тесные связи с национально-демократическими движениями и общественными объединениями Урало-Поволжья

ЧНК яланах «Ирĕклĕхĕршĕн, ирĕклĕхĕмĕршĕн!» лозунга тытса пынă, Уралпа Атăл тăрăхĕнчи (Пĕтĕм тутар общество центрĕ, «Марий Ушем», «Удмурт Кенеш», «Урал» пушкăрт халăх центрĕ, мордвасен «Масторава»), Раççей (Раççей халăхĕсен ассамблейи, Сенеж форумĕ) наци-демократи юхăмĕсемпе тата общество пĕрлешĕвĕсемпе тачă çыхăну тытса ĕçлеме тăрăшрĕ. ЧНК 1993 çултан пуçласа – Тĕрĕк халăхĕсен ассамблейин активлă пайташĕ, 1994 çулта Атăлçи-Урал халăхĕсен ассамблейине йĕркелеме пуçару турĕ. Çак ĕç-хĕле малашне те пурнăçлама пулать, тата çапла тумалла та. Пире пурне те пырса тивекен пĕтĕмĕшле çивĕч ыйтусем нумай, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашни, пĕрлехи мероприятисем, дискуссисем ирттерни тăванла тата территорипе çывăх, кӳршĕ халăхсен хушшинче пĕр шухăшлăха çирĕплетме витĕм кӳрĕччĕç. Хăйĕн статусĕпе ЧНК чăваш тĕнчин сăн-сăпатне Раççейри тата тĕнчери ытти халăх умĕнче кăтартма тивĕç.

Хăйĕн I Аслă пухăвĕн йышăнăвне пурнăçласа ЧНК 1993 çулта Тĕнчене тухайман халăхсемпе нацисен организацине [UNPO, штаб-хваттерĕ Гаагăра (Нидерланд)] кĕчĕ. Çапла вара унăн чăваш халăхĕн политикăпа наци-культура туртăмĕ-тĕллевĕ çинчен тĕнчери организацисене, çавăн пекех пĕтĕм тĕнче общественноçне хыпарласа тăма, чăваш нацийĕн гуманитари тата этнокультура прависене хӳтĕлеме  майсем уçăлчĕç, вăл тĕнчери халăхсемпе хутшăнас, çыхăну тытас енĕпе опыт пухрĕ. ЧНКн пĕтĕм тĕнче арени çине хальхи социополитика условийĕсенче те тухма тăрăшмалла тесе шутлатăп, ара, «пĕтĕм тĕнче правин тата Раççей Федерацийĕн пĕтĕм тĕнче договорĕсен принципĕсемпе нормисем – унăн право системин уйрăлми пайĕсем» (РФ Конституцийĕ, 15 ст., 4 п.).

ЧНК çирĕм пилĕк çул каялла халăхăмăрăн çĕнĕ политика философийĕпе наци идеологийĕн никĕсĕсене хывса хăварма ăнтăлнăччĕ, çак тĕллевпе чăваш халăхĕн 1906 тата 1917 çулсенчи пĕтĕм наци аслă пухăвĕсенче сӳтсе явнă идейăсенчен тĕревленнĕччĕ. Паян вырăнти (ял) шухăшлавĕнчен пăрăнни-писни, малашлăх тĕллевсене пĕтĕм наци идейин никĕсĕ çинче палăртса пурнăçлани уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ те актуаллă. ЧНК çавăн пекех нацин шалти тата тулашри политики пирки хăйĕн шухăшĕсене пĕрре мар евитленĕ. Вĕсенчен пĕри – Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн тытăмĕнче ятарлă орган – Наци политикин ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ – туса хурасси. Чи пĕлтерĕшлĕ задачăсенчен пĕри – чăваш тĕнчин культура-информаци пĕрлĕхлĕ анлăшне тытăмлани, – çакă кирек ăçта пулса иртекен событисем пирки çийĕнчех хыпарлама, тивĕçлĕ йышăнусем тума кирлĕ. Ку чухнехи информаци технологийĕсем çак тĕллеве хăвăрт пурнăçлама май параççĕ.

Малтанхи пекех – Конгресăн чăваш наци интересĕсем пирки вырăнта, республика, регион, федераци тата пĕтĕм тĕнче шайĕнче хыпарласах тăмалла.  ЧНК вăл – халăхăмăр сасси, пирĕн халăх вара историре вăрăм çул утса тухнă, темĕн тĕрлĕ йывăрлăха пăхмасăр – пурнăçĕн хăйне евĕрлĕ йăли-йĕркине, хăйĕн тĕнче курăмне, тăван чĕлхине тата культурине сыхласа хăварнă. Ăс-хакăлăн çак хăватне аталантарас тесен ЧНКн чăваш чĕлхин социаллă функцийĕсене сарас тĕлĕшпе ятарлă программăсем, наци-культура тата вĕрентӳ проекчĕсем хатĕрлеме, вĕсене хӳтĕлеме тата федераци бюджечĕн укçи-тенкипе пурнăça кĕртме вăй çитермелле. Чăвашсен пурнăçне лайăхлатасси вăл – федераци проблеми. Анчах та çак ĕç – пирĕн, пĕтĕм чăвашăн, ЧНК ĕçĕ!

XXI ĕмĕрте чăваш халăхĕ чи çĕнĕ истори субъекчĕ пуласса шанас килет – хăйĕн ячĕпе, чĕлхипе, сăн-сăпачĕпе, тăванлăх туйăмне сыхласа хăварса. Тата – интеллектпа илемлĕхĕн чи пысăк пахалăхлă çимĕçĕпе кăна çĕнтерейĕпĕр.

(Всетатарский общественный центр – ВТОЦ, «Марий Ушем», «Удмурт Кенеш», Башкирский народный центр «Урал», мордовское общественное объединение «Масторава»), России (Ассамблея народов России, Сенежский форум). ЧНК с 1993 г. был активным членом Ассамблеи тюркских народов. В 1994 г. инициировал создание Ассамблеи народов Поволжья и Урала. Эта деятельность может и должна быть продолжена. У нас много общих проблем, и взаимный обмен опытом, проведение совместных мероприятий, дискуссий будет содействовать укреплению солидарности между родственными и близкими территориально, соседними народами. По своему статусу ЧНК должен представлять чувашский образ мира перед другими народами, в России и мире.

В 1993 г. ЧНК реализовал решение I съезда и стал членом Международной организации непредставленных народов и наций (UNPO, штаб-квартира в Гааге, Нидерланды). Таким образом он получил возможность информировать международные организации и мировую общественность о своих политических и национально-культурных устремлениях, выражать свою позицию в отстаивании гуманитарных и этнокультурных прав чувашской нации, а также приобрел опыт международного сотрудничества. Думаю, что выход на международную арену ЧНК следует предпринимать и в нынешних социально-политических условиях, тем более что «общепризнанные принципы и нормы международного права и международные договоры Российской Федерации являются составной частью ее правовой системы» (Конституция РФ, статья 15, пункт 4).

ЧНК двадцать пять лет тому назад пытался заложить основы новой политической философии и национальной идеологии, опираясь при этом на идеи, обсуждавшиеся на общенациональных чувашских съездах 1906 и 1917 гг. (Симбирск). Сегодня представляется особо важным и актуальным отход от чисто местнического (деревенского) менталитета и поиск подступов к общенациональной идее. ЧНК также неоднократно озвучивал свои предложения о внешней и внутренней национальной политике, о необходимости в структуре Кабинета министров Чувашской Республики специального органа – Государственного комитета по национальной политике. Одна из важнейших задач – построение единого культурно-информационного пространства чувашского мира, чтобы любое значимое событие, где бы оно ни происходило, получило отклик и резонанс. При современных информационных технологиях это вполне реально.

И по-прежнему Конгресс должен объявлять о чувашских национальных интересах на местном, республиканском, региональном, федеральном и международном уровнях. ЧНК – это голос народа, который прошел длительный исторический путь и, несмотря на все перипетии, сохранил самобытный уклад жизни, свое мировоззрение, родной язык и культуру. Чтобы развивать этот духовный потенциал, ЧНК мог бы готовить, защищать специальные программы по расширению социальных функций чувашского языка, национально-культурные и образовательные проекты и реализовывать их с обязательным федеральным финансированием. Процветание чувашей – это федеральная проблема. Но дело это – наше, общечувашское, дело ЧНК!

Хочется надеяться, что в XXI в. чувашский народ станет полноправным субъектом новейшей истории – со своим именем, языком, лицом, сохранив чувство родства. И будем побеждать интеллектуальным и художественным продуктом наивысшего качества.

# Конгресс ҫул ҫыравӗ



Алексей
ЛЕОНТЬЕВ

Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ,
Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн
культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

ЧНК Президиумĕн ларăвĕнче Конгресс йĕркеленнĕренпе 25 çул çитнине халалласа кăлармалли кĕнеке концепцине сӳтсе явнă чухне икĕ проектчĕ: 1) ЧНК çинчен ăслăлăх монографийĕ; 2) Конгресс ĕç-хĕлĕ çинчен документсемпе материалсен пуххи. Тĕплĕ калаçу хыççăн иккĕмĕш вариант вырăнлăрах тесе йышăнтăмăр.

Çакă тĕрĕсрех иккенне темиçе сăлтавпа никĕслеме пулать. Вăл е ку авторăн кирек хăш тĕпчевĕнче те тенĕ пекех субъективлăх палăрса тăратех. Автор юриех-и е хăй сисмесĕрех-и – тĕпчемелли ыйтусен кăшкарне хăш-пĕр шухăш-пĕтĕмлетӳпе, сисĕни-сисĕнми сĕмпе хăйле «сӳтме» пуçлать. Çакна çирĕплетекенни – Чăваш наци конгресĕн ĕç-хĕлне тиркевлĕн хакласа çырса кăларнă монографисем тата нумай-нумай статья (вĕсен авторĕсемпе хайлавĕсен ячĕсене асăнни кирлех мар-тăр); вĕсенче «чăваш национализмĕпе сепаратизмĕн» темине, Чăваш наци конгресĕн чăваш этносне паянхи саманара аталантарас ĕçри вырăнĕпе пĕлтерĕшне тепĕр чух – чăнлăха уямасăр, тепĕр чух вара мăшкăллашса-йĕкĕлтешсе çутатни куç кĕретех. Кунсăр пуçне, шел те, вырăсла тухнă материалсемпе тата Конгресс ертӳçисемпе активисчĕсен интервью-статйисен «тĕллевлĕн» турса кăларнă сыпăкĕсемпе çеç никĕслесе. Чăвашла текстсемпе пачах та усă курман та, курмаççĕ те темелле. Калăпăр, çак кĕнекене пухса хатĕрлекенпе, – вăл вара пĕр тапхăр республикăри 16 пичет кăларăмне редакциленĕ, – «чăваш национализмĕн» пĕр «тĕпчевçи» те эксперт пулма ыйтса курса калаçман. Çав вăхăтрах чăваш чĕрĕлĕвĕн ыйтăвĕсене ытларах «Хыпар» хаçатпа унăн кăларăмĕсем туллин те анлăн çутатнă та, çутатаççĕ те.

ЧНК генезисĕпе эволюцийĕнче хаклав виçисен калăпĕсем çук. Тĕрлĕ шухăшлăх – Конгрес ĕçĕнче тĕп принцип. Демократи централизмĕ тенĕ йĕрке вара – çӳлти органсем мĕн йышăннине аялтисен пĕр пăркаланмасăр пурнăçлама хистекенскер – ЧНКшăн та, пĕтĕмĕшле – ку чухнехи общество организацийĕсемшĕн те ют. Ку енĕпе илсен – ЧНКн кашни Аслă пухăвне ирĕк шухăшлă форум тесе хакламалла. Çав форумсенче политика ыйтăвĕсене те сахал мар çĕкленĕ. Хĕрӳ дискусси, çивĕч калаçу тепĕр чухне вĕсене хутшăннă çынсене пĕр-пĕринчен ютшăнтарнă та ахăр, анчах çав дебатсем нихăçан та саккунлăх картинчен тухман, темĕн те калаçма юраслăх чиккинчен каçман. Тухмаççĕ те, каçмаççĕ те. Юлашкинчен вара чăваш наци чăмăртанăвĕн ыйтăвĕсене хиврен сӳтсе явнĕ çĕрте чăнлăх тĕшшине тупма май панă та, параççĕ те.

Манăн шухăшăмпа – ЧНК политика организацийĕ пулман, пулма та пултарайман. Чăн та, малтанхи тапхăрта аслă пухусенче, Мăн Канаш ларăвĕсенче политика документчĕсем чылай йышăннă. Анчах тĕрĕссине каласа хăварар: вĕсем пурте тенĕ пекех сĕнӳ акчĕсен шайĕнче кăна юлнă [Чăваш Республикин Конституцийĕн (Тĕп Саккунĕн) проекчĕ, «Чăваш халăхĕн наци чĕрĕлĕвĕ çинчен» деклараци, «Чăваш Республикин «Гражданлăх çинчен» саккунĕн принципĕсем çинчен» резолюци т. ыт.]. çакăн тĕп сăлтавĕсем: Чăваш Республикин патшалăх органĕсем никĕсри документăн – Патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан декларацин – чăн тĕшшине-пĕлтерĕшне шĕветсе-вăйсăрлатса пыни, каярахпа вара республика Патшалăх Канашĕ ăна пăрахăçлани. 2009 çулхи çĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров Раççей Конституци Сучĕ наци

# Летопись Конгресса

Когда в Президиуме ЧНК подняли вопрос об издании книги, посвященной 25-летию Конгресса, и о ее концепции, было два проекта: 1) научная монография о ЧНК; 2) сборник документов и материалов о деятельности Конгресса. В итоге остановились на втором варианте.

Указанный выбор обусловлен несколькими причинами. Почти любое авторское исследование грешит субъективизмом, то есть автор волей-неволей, штрихами или некими нюансами все равно формулирует свое видение данной проблематики. Тому свидетельство – монографии и бесчисленное количество статей в чувашской и московской периодике с негативными оценками Чувашского национального конгресса (кажется, нет смысла перечислять авторов и названия их опусов), где тема «чувашского национализма и сепаратизма», роль и значение ЧНК в деле возрождения чувашского этноса в современных условиях излагаются иногда в совершенно искаженном виде, а зачастую в саркастическо-гротескной трактовке. И, увы, лишь на основе русскоязычных материалов и вырванных из оригиналов фрагментов интервью и статей руководителей и активистов Конгресса. А чувашскоязычные тексты совершенно игнорируются. По крайней мере, к составителю данной книги, который редактировал в одно время 16 республиканских изданий, как к эксперту ни разу не обратился ни один «исследователь чувашского национализма». А ведь проблемы чăваш чĕрĕлĕвĕ чувашского возрождения в основном обсуждались и обсуждаются на страницах газеты «Хыпар» и ее дочерних изданий.

В генезисе и эволюции ЧНК не существует однозначных критериев оценки. Тĕрлĕ шухăшлăх разномыслие – основной принцип, которым руководствуется в своей днятельности Конгресс. Так называемый демократический централизм – безусловная обязательность решений вышестоящих органов для нижестоящих – априори не только для ЧНК, но и всех современных общественных организаций. И в этом русле каждый съезд Конгресса являл собой действительно свободомыслящий, либеральный форум, где часто звучали и политические заявления. Острые дискуссии, конечно, иногда разрывали межличностные связи субъектов этих словопрений, но никогда не выходили за рамки законности, дозволенного, и, в конечном счете, способствовали тому, чтобы найти нужный стержень в поиске баланса в вопросах о национальной консолидации.

На мой взгляд, ЧНК не стал политической организацией и не мог ею стать. Хотя на первом этапе им было принято немало политических документов. Но не будем лукавить: почти все они остались на уровне актов рекомендательного характера (проект Конституции (Основного Закона) Чувашской Республики, декларация «О национальном возрождении чувашского народа», резолюция «О принципах закона Чувашской Республики «О гражданстве» и др.). Тому основная причина – сначала нивелирование государственными органами Чувашской Республики истинного смысла базового документа в деле истинного возрождения этноса – Декларации о государственном суверенитете, а затем отмена ее Государственным Советом республики. А Президент Чувашии Николай Федоров 18 июня 2009 г. прямо заявил, что поддерживает требование Конституционного суда России об отмене деклараций о

республикисен патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан декларацийĕсене пăрахăçлама хистени пирки çапла евитленĕ: «Эпĕ федераци патшалăхра патшалăх суверенитечĕ çинчен пĕлтернине нихăçан та ырламан».

Пĕтĕмĕшле – «ЧНК тата Федоров» тема çав тери кăсăк, тата вăл кĕнекере самаях пысăк вырăн йышăнать. Уйрăммăн илсен, вулаканăмăра Б. Чиндыковăн «Время и пространство ЧНК» статйипе пайăррăн паллашма сĕнетĕп. Унта автор (хăш-пĕр саманта вăл хăйле хаклать-и тен) палăртнă темăна тарăннăн та анлăн тĕпченĕ.

Кĕнекене республикăри хаçатсенче пичетленнĕ, интернет-сайтсене вырнаçтарнă документсемпе материалсем кĕнĕ. Урăхла каласан – кăларăма пухса хатĕрлекенĕн архивсенче хаçатсемпе журналсен экземплярĕсене тупмалла, кашни номере тĕплĕн тĕпчемелле те кирлĕ материалсене суйласа илмелле пулнă. Çапла вара «Хыпар» хаçатăн 1991–2017 çулсенчи 6300 ытла номерне («Хыпар» Издательство çуртне тавах), «Советская Чувашия» хаçатăн 2000 яхăн номерне, «Аван-и», «Паянтан», «Аталану», «Чăваш ен», «Вучах», «КЛИП», «Чăваш тĕнчи=Чувашский мир» хаçатсен мĕн пур номерне (Чăваш Республикин Наци библиотекине пысăк тав), Конгресс çинчен маларах тухнă кĕнекесене, архив материалĕсене тишкернĕ. Тата, паллах, кашни материала сканерпа ÿкерсе илнĕ е тепĕр хут пичетленĕ (çакăншăн ЧНКн тĕрлĕ организацири тусĕсене уйрăммăн тав тăватпăр).

Кĕнеке 12 блокран тăрать: ум сăмахсем; тăхăр сыпăкра – ЧНКн вăл е ку Аслă пухăвĕн, Мăн Канаш ларăвĕсен материалĕсем, организаци ĕç-хĕлĕн кĕске хроники, Конгрес ертÿçисемпе активисчĕсен çивĕч ыйтусемпе çырнă статйисем, интервьюсем; ЧНК çинчен пичетленнĕ литература списокĕ; ЧНК фотохроники (альбом-хушăм формачĕпе). Кунсăр пуçне, кĕнекен электрон версийĕ те пур. Мĕн пур документ-материала хронологи йĕркипе вырнаçтарнă.

Материалсемпе документсем «чăваш нацийĕн элчисен чи аслă пухăвĕн» ĕç-хĕлĕнчи мĕн пур кăткăслăха, çивĕч самантсене уçса парасçĕ. Конгресс нихăçан та хытса ларнă тытăм пулман. Вăл яланах шыравра. Унăн тĕп тĕллевĕсем – чăваш халăхĕн наци хăй ăнланулăхне чĕртесси, ăс-хакăл хăватне аталантарасси, чăваша ирĕклĕх, мĕн пур халăхсемпе пĕр тан правасем çĕнсе илме пулăшасси.

Кăларăмри материалсем тепĕр чăнлăха та кăтартаççĕ: Конгресс хăйĕн ĕç-хĕлĕн пĕр тапхăрĕнче те патшалăх органĕсене хирĕç «вăрçă сукмакĕ» çине тухман. Анчах та ку Конгресс тата унăн ертÿлĕхĕ республикăра Суверенитет çинчен калакан декларацие пурнăçламанни (кайран пăрахăçлани) çине, «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккунăн тĕп принципĕсене утăм хыççăн утăм пăрахăçла са пыни çине мĕскĕннĕн пăхса тăнине пĕлтермест. Пĕтĕмĕшпе илсен – социумри глобализаци лару-тăрăвĕнче чăваш чĕлхин вырăнĕпе пĕлтерĕшне анлăн сарасси, паян вара чĕлхемĕре сыхласа хăварасси ЧНК ĕçĕнче яланах никĕсре тăнă та, тăрать те. Шăпах çакна çирĕплетеççĕ те кĕнекери документсем. Шел те, ыйтусене татса парасси ЧНКран кăна килмест. Культурологи задачисен тупсăмĕсене, чăваш пĕрлĕхĕнчи ăс-хакăл процесĕсен усăллăх коэффициенчĕн тăрăмне нумай чухне патшалăх политикинче шырамалла.

Кĕнекери материалсем тăрăх Конгресс ĕç-хĕлĕн кашни тапхăрĕн [А.П. Хусанкай президентлăхĕ (1992–1997), Г.Н. Архипов тапхăрĕ (1997–2013), Н.Ф. Угаслов ертÿлĕхĕ (2013 çултанпа)] хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхĕсене палăртма пулать.

Çак кăларăма Чăваш наци конгресĕн çул çыравĕ тени пĕртте ÿстерсе калани мар. Унта организаци мĕнле пуçланса кайнине, еплерех аталанса пынине, унăн чăваш наци-культура чĕрĕлĕвĕнчи нумай енлĕ ĕç-хĕлне туллин те анлăн çутатнă.

государственном суверенитете национальных республик: «Я никогда не был сторонником провозглашения государственного суверенитета внутри федеративного государства».

Вообще тема «ЧНК и Федоров» крайне интересна и она занимает в книге немалый объем. Ограничусь рекомендацией читателю ознакомиться, в частности, со статьей Б. Чиндыкова «Время и пространство ЧНК», где автор (может быть, с определенной долей субъективности) довольно глубоко освещает вышеобозначенную тему.

В данную книгу решено было включить документы и материалы, опубликованные в республиканской печати, а также размещенные в интернет-сайтах. Следовательно, составителю необходимо было найти в архивах экземпляры газет и журналов, скрупулезно проанализировать каждый номер и выявить из страниц нужный материал. Таким образом было изучено более 6300 номеров газеты «Хыпар» за 1991–2017 гг. (за что безмерно благодарны ИД «Хыпар»), около 2000 номеров газеты «Советская Чувашия», все номера газет «Аван-и», «Паянтан», «Аталану» «Чăваш Ен», «Вучах», «КЛИП», «Чăваш тĕнчи = Чувашский мир», «Республика» и др. (большое спасибо Национальной библиотеке Чувашской Республики), ранее изданные книги о Конгрессе, архивные материалы и т.д. И конечно, каждый нужный материал надо было отсканировать или перепечатать (за что весьма признательны группе друзей ЧНК из разных организаций).

Книга состоит из 12 блоков: предисловий; девяти глав с материалами того или иного съезда, заседаний Большого совета ЧНК и краткой хроникой его деятельности, публикаций руководителей и активистов Конгресса по злободневным вопросам; списка литературы о ЧНК; фотохроники ЧНК (в формате альбома-приложения). Кроме того, представлена электронная версия сборника в виде диска. Все документы и материалы размещены в хронологическом порядке.

Материалы и документы свидетельствуют о всех сложностях и перипетиях в деятельности «высшего представительного собрания чувашской нации». Конгресс никогда не был аморфной структурой. Он постоянно находился и находится в поисках. Вся его деятельность направлена на возрождение национального самосознания, развитие интеллектуального потенциала чувашского народа, в конечном итоге на сохранение этноса.

Из материалов видно, что Конгресс ни на одном этапе своей деятельности не вставал «на тропу войны» с государственными органами. Но это не значит, что он и его руководство смиренно наблюдали за тем, как отменили Декларацию о государственном суверенитете Чувашской Республики, как шаг за шагом сводили на нет основные принципы закона «О языках в Чувашской Республике». К сожалению, не все зависит от ЧНК, положительное решение культурологических задач связано в основном с эффективностью работы государственных структур. В частности, борьба за внедрение, а сегодня уже за сохранение чувашского языка в условиях глобализации социума в работе ЧНК занимала и занимает главное место. Тому свидетельство – документальная база данного сборника.

На материалах книги можно легко обозначить (конечно, условно) характерные особенности каждого этапа деятельности Конгресса [периодов президентства А.П. Хузангая (1992–1997), Г.Н. Архипова (1997–2013) и Н.Ф. Угаслова (с 2013 г.)].

Данное издание следует назвать летописью Чувашского национального конгресса, наиболее полно охватившей историю становления и развития организации, ее многостороннюю деятельность по национально-культурному возрождению чувашского народа.

# 1992, юпа, 8—9: I Аслă пуху



Делегаты Чувашского национального конгресса. 8 октября 1992 г.

### Чăваш халăх хуралĕпе Чăваш аталанăвĕн партийĕ мĕн пур чăваш конгресне Шупашкар хулинче

## ПУХАССИ ÇИНЧЕН ЙЫШĂННИ

Чăваш Республикинче тата аякра пурăнакан çынсем ыйтнине тивĕçтерсе, чăваш халăхĕ тăван чĕлхене, ăс-пурлăха, йăла-йĕркенĕ аталантарма, хуçалăхпа экономика хутшăнăвĕсене çирĕплетсе пыма тăрăшнине шута илсе, Чăваш Халăх Хуралĕпе ЧАП çапла пĕлтерессĕ:

1. Шупашкарта 1992 çулхи çĕртме уйăхĕнче мĕн пур чăваш Конгресне пухмалла.

2. Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕнчен Чăваш халăх конгресне йĕркелесе ирттерекен Хатĕрленӳ комитечĕ туса хума, А.П. Хусанкай депутата çав комитета ертсе пымашкăн çирĕплетме ыйтас.

3. Чăваш Республикин Министрсен Советне çĕнĕлле йĕркеленĕ чухне халăхсен диаспорипе ĕçлекен патшалăх комитечĕ туса хума ыйтас.

4. Чăваш Республикин Аслă Советне, Республика Министрсен Советне, общество организацийĕсене Чăваш халăх конгресĕн Хатĕрленӳ комитечĕпе тачă çыхăнса ĕçлеме, ăна пур майсемпе те пулăшса пыма ыйтас.

ЧĂВАШ ХАЛĂХ ХУРАЛĔ,
ЧĂВАШ АТАЛАНĂВĔН ПАРТИЙĔ.
1992 çулхи нарăсăн 7-мĕшĕ.
*«Хыпар», 1992, нарăс, 26.*

### Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕн Постановленийĕ

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСНЕ ИРТТЕРЕССИ ÇИНЧЕН

Раççей Федерацийĕн территорийĕнче тата унăн тулашĕнче пурăнакан чăваш халăхĕн наци туйăмĕсене çĕнĕрен чĕртсе малалла аталантармалли çул-йĕрсене сӳтсе явас тĕллевпе Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕ çапла йышăнать:

1. Чăваш наци конгресне 1992 çулхи юпа уйăхĕн 8–9-мĕшĕсенче Шупашкарта пухас.

2. Организаци комитечĕн йышне çирĕплетес тата ăна тĕп мероприятисен тата организаци-техника ыйтăвĕсемпе çыхăннă мероприятисен планне палăртса хатĕрлеме, каярахпа ăна Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕн ларăвĕнче çирĕплетмешкĕн тăратма хушас.

3. Чăваш Республикин Министрсен Советне 1992 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен çак постановление пурнăçлама май паракан финанс тата организаци мероприятийĕсене палăртса хатĕрлеме тата йышăнма сĕнес.

Чăваш Республикин Аслă Совечĕн
Председателĕ Э. КУБАРЕВ.
*Шупашкар хули, 1992 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕ.*

### Постановление Президиума Верховного Совета Чувашской АССР

## О ПРОВЕДЕНИИ ЧУВАШСКОГО НАЦИОНАЛЬНОГО КОНГРЕССА

В целях обсуждения путей дальнейшего национального возрождения и развития чувашского народа, проживающего на территории Российской Федерации и за её пределами, Президиум Верховного Совета Чувашской Республики постановляет:

1. Созвать Чувашский национальный Конгресс 8–9 октября 1992 года в г. Чебоксарах.

2. Утвердить состав организационного комитета и поручить ему подготовить план основных и организационно-технических мероприятий для последующего утверждения на заседании Президиума Верховного Совета Чувашской Республики (прилагается).

3. Предложить Совету Министров Чувашской Республики разработать и принять до 1 июля 1992 года финансовые и организационные мероприятия, обеспечивающие выполнение настоящего постановления.

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСНЕ ХАТĔРЛЕНСЕ ИРТТЕРЕКЕН ОРГАНИЗАЦИ КОМИТЕЧĔН ЙЫШĔ

**Э.А. Кубарев** – Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Председателĕ (председатель).
**А.П. Хусанкай** – Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Культура, чĕлхене тата нацисем хушшинчи хутшăнусене аталантарас енĕпе ĕçлекен комиссийĕн председателĕ (председателĕн пĕрремĕш заместителĕ).
**В.П. Мидуков** – Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ (председатель заместителĕ).
**В.П. Никитин** – И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ (председатель заместителĕ).
**Э.А. Аблякимов** – «Чувашагропромстрой» пĕрлешӳ председателĕ.
**В.В. Алексеев**– Шупашкар хулин администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан.
**П.К. Андреев** – Чăваш Республикин çамрăксен театрĕн литература пайĕн заведующийĕ.
**Г.В. Викторов** – Эстони Республикинчи Чăваш общество-культура центрĕн председателĕ.
**Г.Н. Волков** – Раççей Педагогика наукисен академийĕн академикĕ (Мускав хули).
**Н.В. Воронцов** – Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн Мускаври яланхи представителĕн заместителĕ.
**Г.И. Воронцов** – И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕн Чăваш филологийĕпе культурин факультечĕн деканĕ.
**Г.П. Вочканова** – Удмурт республикин Грахово районĕнчи Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен Чăваш клубĕн председателĕ.
**И.О. Герасимов** – Чăваш Республикин культура министрĕн заместителĕ.
**Н.И. Григорьева** – Чăваш Республикин Театр деятелĕсен союзĕн председателĕ.
**В.Д. Данилов** – Чăваш Республикин вĕрентӳ, наукăпа аслă шкул министрĕ.
**В.И. Данилов** – «Известия Татарстана» хаçат собкорĕ, Тутарстан Республикин халăх депутачĕ.
**Н.И. Егоров** – Чăваш краеведени музейĕн директорĕ.
**В.А. Заворзаев** – «Шупашкарти пир-авăр комбиначĕ» производство пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ.
**Н.А. Зайцев** – Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Чăваш Республикин представителĕ.
**В.П. Иванов** – Чăваш Республикин Министрсен Совечĕ çумĕнчи Чĕлхе, литература, историпе экономика наука тĕпчев институчĕн директорĕн заместителĕ.
**Г.И. Иванов** – Чăваш художество промыслисен «Паха тĕрĕ» производство пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ.
**В.П. Ильдуганов** – Тюмень облаçĕнчи Чăвашсен «Тăван» ассоциацийĕн вице-президенчĕ.
**А.Л. Илларионов** – Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Секретариачĕн пĕтĕмĕшле пайĕн заведующийĕ.
**Г.А. Ильенко** – Шупашкарти приборсем тăвакан заводăн генеральнăй директорĕ.
**А.К. Кириллов** – Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Секретариачĕн нацисем хушшинчи хутшăнусен секторĕн заведующийĕ.
**И.С. Кирюшкин** – Ульяновск облаçĕнчи Чăвашсен И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен культурăпа çут ĕç обществин председателĕ.
**А.А. Кондратьев** – Пушкăртстанри Чăваш общество-культура центрĕн председателĕ, Ĕпхӳри нефть институчĕн профессорĕ.
**А.И. Кушков** – Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕ.
**П.С. Краснов** – Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Массăллă информаци хатĕрĕсем, общество организацийĕсемпе тата граждансен юхăмĕсемпе çыхăну тытас, общество шухăш-кăмăлне тишкерес енĕпе ĕçлекен комиссийĕн председателĕ.

**А.П. Леонтьев** – «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ.
**В.И. Мешков** – Красноярск крайĕнчи Чăваш общество-культура пĕрлешĕвĕн председателĕ, Раççей Федерацийĕн халăх художникĕ.
**Х.Х. Мингазов** – «Шупашкарти промышленноç тракторĕсен завочĕ» производство пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ.
**Б.П. Никитин** – Тутарстанăн Анат Кама районĕнчи Чăваш общество- культура центрĕн председателĕ.
**С.Л. Павлов** – Чăваш патшалăх телерадиокомпанийĕн председателĕ.
**Н.В. Пыркин** – Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн Председателĕн заместителĕн социаллă ыйтусемпе ĕçлекен консультанчĕ.
**В.С. Пряников** – Чăваш культурин Мускаври обществин председател ĕ.
**В.Е. Симаков** – Самар облаçĕн Сызрань районĕнчи Чăваш общество- культура центрĕн председателĕ.
**В.М. Соловьев** – Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн ĕçĕсен управляющийĕ.
**М.И. Скворцов** – Чăваш Республикин халăха вĕрентес ĕç работникĕсен квалификацине ÿстерекен институчĕн чăваш чĕлхипе культура теорийĕн кафедрин заведующийĕ.
**В.В. Тургай (Воробьев)** – «Тав» фондăн вице-президенчĕ.
**Г.И. Хорошев** – Шупашкарти В.И. Чапаев ячĕпе хисепленекен производство пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ.
**О.М. Цыпленков** – Чăваш çамрăкĕсен союзĕн секретарĕ.
**Л.С. Шевницын** – Шупашкарти «Химпром» производство пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ.
**В.И. Энтип** – Чăваш Республикин Писательсен союзĕн правленийĕн председателĕн заместителĕ.
**Л.В. Яковлев** – Шупашкарти «Электроприбор» производство пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ.

## I АСЛĂ ПУХУ УМĔНХИ ДИСКУССИ • ПРЕДСЪЕЗДОВСКАЯ ДИСКУССИЯ
## Геннадий ВОЛКОВ: «ПИРĔН ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ ТА ÇУК...»

*СССР Педагогика наукисен академийĕн академикĕ, Наци шкулĕсен институчĕн этнопедагогика лабораторийĕн пуçлăхĕ Геннадий Никандрович Волков «Хыпар» журналисчĕсемпе 1991 çулхи юпа уйăхĕнче ирттернĕ тĕл пулуран.*

**А. Леонтьев:** Пирĕн паянхи хăнана, паллă ученая тата Хуначи Кашкăр ятпа çыракан писателе, пурте пĕлетпĕр пек ĕнтĕ. Эпĕ хам çакна ас тăватăп: 1974 çулта университетра «Юманпа Хĕвел» ятлă кĕнеке пирки «питĕ хăрушăскер» тесе сас-хура сарчĕç. Тÿрех кĕнеке лавккине чупрăмăр, туянса вуларăмăр – питĕ лайăх кĕнеке. Шел, эпир Геннадий Никандрович патĕнче вĕренсе курман. Тен, çавăнпа та, Геннадий Никандровича чи малтанах хăй çинчен туллинрех каласа пама ыйтни ытлашши пулмĕ: ăçтан, мĕнле пуçланнă ăслăлăх çулĕ, пурнăç çулĕ еплерех килсе тухнă?

**Г. Волков:** Кунта ĕлĕк «Чăваш коммуни» хаçат пурччĕ, эпĕ пĕр 46 çул каялла çавăнта пуçласа пичетленнĕ – «Манăн асанне» ятлăччĕ çыравăм. Тĕрĕссипе каласан, манăн пултарулăх çав «Чăваш коммунинчен», «Канашран», «Хыпартан» пуçланса кайнă тени те тĕрĕсех пулать пулĕ.

Пĕрремĕш статьяра асаннене, унăн ачин ачисене мухтанă эпĕ – пĕр 28 çынччĕ ÿссе çитĕннисем. Çарта пулнисене мухтатăп, суйлава каяççĕ тетĕп, Сталин майлă çынсемшĕн сасă парĕç тетĕп. Пурин çинчен те юратса çыратăп – çак япала пулнă манăн.

Манăн пĕтĕмĕшпех, пурте – чăваш халăх педагогики те, этнопедагогика та, «Юманпа Хĕвел» те – асаннерен пуçланса кайнă темелле.

Халь шухăшлатăп та чăваш мĕн тери вăйлă, хăраса каймалла пултаруллă халăх пулнине, ăс-тăн енĕпе мĕн тери пуяннине куратăп. Çав асаннерен ÿссе кайса, мĕн пур япала унран тухнă терĕм ĕнтĕ – асаннепе иксĕмĕр кăна мĕн тума пултартăмăр та, 2 миллионлă халăх мĕн тума пултарать-ши – тытăнсан?

Çакăн çинчен калаçатпăр унпа, калаçса пĕтерейместпĕр. Вилчĕ вăл ман апрелĕн 7-мĕшĕнче, 1950 çулта. Çавăнтанпа вара çĕрле те килет, калаçатпăр – Турăпа калаçнă пек.

Мĕн каласшăн-ха эпĕ çакăнпа? Çав 2 миллионлă халăха пурне те ĕçе хутшăнтарса ярас пулсан эпир авалхи грексенчен тахçанах ирттерсе ямалла пулĕ. Чăнах – йăлт!

Эпĕ малтанах асанне пек çын нумаях мар тесе шутлаттăм. Анне те кайран, кăшт ватăлсан, кÿренекен пулчĕ: йăлт аслă амăшĕ çеç, йăлт вăл çеç. Аннен вăхăчĕ пулман калаçса ларма, ĕçленĕ. Вара кайран сисрĕм – анне те çавăн пекех ăслă иккен. Асанне çинчен вăл халĕ те нумай каласа парать. Нумаях пулмасть çĕнĕ çурта куçса тухни çинчен аса илтĕмĕр.

Атте вĕреннĕ çын пулнипе-и – вăл физика-математика вĕрентекен пулнă, анне питĕ кăмăллă пулнипе-и (анне йăхне ватăсене пăхакан йăх тенĕ), кĕçĕннипе тĕпе юлмалла çĕртех, асанне аннепе пĕрле уйрăлса тухать. 1931 çулта куçса тухнă эпир.

Те – каласа панипе ас тăватăп, те – манмалла пулман, нумай япалана аса илетĕп те, çав Л.Н. Толстойăн чăн калавĕсем – юмахĕсем евĕр вара куратăп (асанне пирĕн чăн-чăн Толстойла шухăшлакан çынччĕ): уйрăлса тухнă кун асанне çу уçлать, çăкăр пĕçерет, пăтă пĕçерет. Вара çуне мана – пиллĕке çитмен, тăваттăри ачана – тыттарать, хăй пăтă çине çăкăр хурать. Çĕнĕ çурта, кукаçăн кĕлетĕнчен пăсса тунă çурчĕ – чаплă çурт мар, куçас умĕн çуне-çăкăрне касса уйрăлса тухать: çуне касать те тепĕр тирĕке хурать, пуçламан çăкăр хурать сĕтел çине, пăтă лартать. Çавăн пек тухса утатпăр. Каласа хăварать алăк уçса хупиччен: çăкăр-тăварлă, çуллă пăтăллă, çуллă пулăр!

Çак япаласене аса илетĕп те шухăшлатăп: те – хамах ас туса пурăннă, те – кайран... Ман шутпа, асанне акнă вăрлăх – пĕртен пĕр пĕрчĕ – çавăнпа ÿссе çитĕннĕ, пурăннă, ĕмĕре иртернĕ пек туйăнать мана. Йăлт çав панă ăс-тăн пуянлăхĕ мана пурнăçа иртерме çитнĕ пек туйăнать.

Халĕ, ав, хамăр çĕр-шыв пирки шухăшлатпăр, çамрăксен, тен, мана пĕтĕмпех ăнланса та илеймĕç: питĕ савăнмалли те пур пек туйăнать, анчах та, ман шутпа, пăшăрханмалли, хуйхăрмалли, пачах савăнма юрăхсăрри нумай.

<...>

Эпĕ 1937 çулта колхоза кайрăм – 1951 çулччен унта ĕçлерĕм. 14 çул тÿлевсĕр ĕçленĕ пек – ĕç кунĕшĕн. Унтан институтра вĕрентĕм, вĕренсе пĕтеричченех 4-мĕш арçын шкулĕнче ĕçлеме тытăнтăм.

Ун чухне обкомра Иван Матвеевич Чарыков вырăс пĕрремĕш секретарьччĕ. Вăл чунĕпе питĕ чăваш майлăччĕ. Унăн амăшĕ майра пулнă пулас, ашшĕ Иван Яковлевич Яковлев патĕнче вĕреннĕ. Ятне те, Иван Яковлевича пула, Иван ят панă. Никам та пĕлмест çакна. Ăна хăш-пĕр чух Алкасем «чăваша таптать» тесе кÿренетчĕç. Вăл хăй вăхăтĕнчи çын пулнă. Иван Яковлевича хĕсĕрленĕ вăхăтра та, сăмахран, 1948 çулта, унăн 100 çулне иртерчĕ. Питĕ хăватлă иртрĕ çав уяв. Вăл пуçарнипе, вăл тăрăшнипе пулĕ тетĕп... Тепре çĕрĕн-кунĕн калаçса лармалла наука сессине иртерчĕ Пионерсен çуртĕнче – райком, райĕçтăвком секретарĕсене пурне те пухса...

<...>

**И. Иванов:** Наци шкулĕн тĕслĕхĕ пулнă та çав пирĕн – Чĕмпĕр шкулĕ...

**Г. Волков:** Пирĕн пĕртен пĕр наци шкулĕ Чĕмпĕрте, революциччен пулнă, ыттисем – пĕри те наци шкулĕсем мар. Тивĕçтермен вĕсем наци кăмălне.

Чăваш патшалăх университечĕ, Чăваш патшалăх педагогика институчĕ те – официаллă ят кăна. Вĕсем наци тĕлĕшпе, пĕтĕмĕшле илсен, ют: наци аталанăвĕшĕн те, кăмăлĕшĕн те, наци интересĕшĕн те.

Халĕ шухăшлатăп та эпĕ – наци шкулĕнче ĕçлетĕп пек. Чăнласа ĕçлесех пулсан, ман шутпа, пире чăн наци шкулĕсем кирлĕ. 10–11 çул вĕрентнĕ вăхăтра пĕр-ик ăрура, лайăх «ĕçлесен», чăваша пĕтерсе хума пулать! Е ик-виç ăрура, 30–40 çул хушшинче, Çурçĕр халăхĕсене пĕтернĕ пекех. Çавăнпа та халĕ чăн-чăн наци шкулĕсем кирлĕ.

Мĕн туса хучĕ пĕртен пĕр Чĕмпĕрти наци шкулĕ! Хăй тата ăна пăхăннă 1200 яхăн чăн-чăн шкул! Чăвашла чиркÿ чĕлхи, тĕн чĕлхи – питĕ хитре чĕлхе, парти пропагандин чĕлхи мар, çав хăтарса хăварчĕ пирĕн чĕлхе илемне те, ăшăлăхне те, чĕререн ăшă калаçассине те. Çав хăтарса хăварчĕ. Çĕмĕрсе пĕтерейменнерĕç – 3–4 чиркÿ юлчĕ. Шутлатăп та, чăнах та халăх пулса çитес тетпĕр пулсан, пире наци шкулĕ кирлĕ. Малтанлăха 3–4 пулсан та: Шăмăршăра, Патăрьелĕнче, Елчĕкре...

Эпĕ ăна мĕншĕн калатăп-ха? Çынсемпе çыхăнтаратăп. Сăмахран, Айхипе Юхман, тен, тата тутар академикĕн Шакуров психологăн, хăйсен çыхăнăвĕсемпе усă курса, уçасчĕ, калăпăр, таса чăваш гимназийĕ.

Наци шкулĕ çукки тĕнчепе çыхăнманнинчен те килет – чăн-чăн наци тĕнчипе çыхăнмалла. Эпир вара тăкăрлăкра – кĕлете хупса хунă пек. Гимнази тăвас пулсан, пирĕн вăл, паллах, тĕслĕхе, чăваш-акăлчан гимназийĕ пулмалла.

Сăмахран, хамăн ют çĕр-шыври çыхăнусемпе усă курса, манăн Елчĕкре гимнази уçма тăрăшса пăхмалла. Вăл чăваш-нимĕç гимназийĕ пулмалла. Виçĕ чĕлхе лайăх пĕлмелле, тăваттăмĕшĕ кăшт начартарах пултăр. Унсăрăн, юта тухмасăр, ООН, ЮНЕСКО пирĕн хута кĕмесен, хамăр тăрăшнипе çеç эпир, пуçа çапса çĕмĕрсессĕн те, пĕтетпĕр – таптаса тăкаççĕ пире.

Халĕ нумай çĕрте вăйлăрах халăхсен агрессивлăхĕ ÿссе пырать. Вĕсем хăйсен унччченхи, халĕ те юлнă привилегине хÿтĕлесшĕн – вĕсене хĕсĕрлени нимĕн те çук пулин те. Хăйсене ытти халăхсемпе пĕр тан туйсассăнах вĕсен кăмăлĕ пăсăлать – пĕр тан пуласшăн мар, вĕсем пысăк пулма хăнăхнă. Çак япаласем мана нумай шухăшлаттараççĕ.

Эпĕ наци шкулĕ мĕнле пулмаллине пĕлетĕп. Хамăн вĕренÿ программисем пур манăн. Лицей, этнопедагогика класĕсем туса та аппаланкаларăмăр. Халăх, хăйĕн чунне, аваллăхне пĕлмесен, вăл ниме те тăмасть – ун пек нимле наци те пурăнаймасть. Пирĕн вара мухтанмалли, пĕлмелли темĕн те пур.

Сăмахран, И.Я. Яковлев пирки кĕнеке çыртăм, ăна пула тухса тармалла та пулчĕ кунтан. Халĕ тин тухать «Судьба просветителя» кĕнеке. Мускавра, 1992 çулта. Лайăх çырнă пек туйăнатчĕ. Халĕ ют çĕр-шывсенче докладсем туса çÿрерĕм те – начар çырнă. Халĕ ыйтусем параççĕ те мана, хуравлатăп та – начар çырнă. Манран пысăкрах, вăйлăрах, ăслăрах çынна çыртармалла пулнă. И.Я. Яковлев виçесĕр пысăк иккен – пророк пек, Толстой пек, Ганди пек. Ун шайне хăпарма çук иккен. Эпĕ ăна хам шая антарса лартнă иккен, ун шайне хам хăпарайман.

Эппин, ман хыççăн килнисен ун çинчен тĕрĕсрех те, лайăхрах та çырмалла. Пур унта манăн, паллах, лайăх вырăнсем, анчах хальхи куçпа куратăп та...

Пĕчĕк япалисене анчах илер – вăл вĕрентнĕ ачасем 90 çул пурăнаççĕ, пĕрпĕрин хушшинче хирĕçÿ çук, килте туслă, шăкăл-шăкăл... Чи çамрăкла вилни, ман шутпа, – Петр Терентьевич Золотов. Сасартăк, 89 çултах вилсе кайрĕ. Ак кунта, Ишекре, пурччĕ 96 çулхискер, И.Я. Яковлевăн 140 çулне килсе кайрĕ, 10-мĕш класс хĕрачи сассипе аса илÿ каларĕ.

Мĕншĕн пулса пынă-ха çапла? Шкулне çемье йĕлипе тунипе. Хăй – ашшĕ пек. Кăшт чирлет – хăйĕн мăнастирне ярать. Унта пĕччен хĕрарăмсем пурăннă – хăйсен община. Е хăйпе дачăна илсе каять. Ял хуçалăх ферми пур, туберкулез хăрушлăхĕ пулсанах – кăмăс ĕçме ярать, ревматизм пур – Аçтăрхан кĕпĕрнине пылчăкпа эмелленме ярать. Те хăй тăлăх ÿснĕрен – çемьене пысăк хака хунă вăл, тĕлĕнмелле.

Ун пек учитель пулман пирĕн – тен, тĕнчере те пулман пулĕ. Эпĕ çакна кăна каланăччĕ 1971 çулта: «Тĕнчере кам пур-ши тата?» Çакăн хыççăн çыпăçма пуçларĕç.

Наци шкулĕ çук тесе каларăм. Ку та чи хăрушши мар. Ман шутпа, пĕтĕмĕшле илсен, тÿррĕн, чĕререн каласан, пирĕн Тăван çĕр-шыв та çук. Килти пек туйăмастăн пулсан мĕнле Тăван çĕр-шыв пултăр вăл? Пуçлăх иккĕленсе кăна чăвашла калаçать пулсан. Чăвашсен хушшинче пĕр вырăс пулсанах чăвашла калаçма хăратпăр пулсан. Эпир килти пек мар, Тăван çĕр-шыври пек мар пĕрре те.

**А. Леонтьев:** Мĕнле тупмалла-ха ăна – Тăван çĕр-шыва?

**Г. Волков:** Халĕ ытти халăхсем Тăван çĕр-шывне тупма пуçларĕç. Эпĕ пĕрре, 1989 çулта, «Литературная Россия» валли «Обретут ли чуваши Родину?» тесе çыртăм, хăш-пĕр чăвашсем кÿренчĕç ун пирки. Ун чухне демократи ÿсме пăрахман-ха – ÿссе çитнипе пĕрлех вара чакма пуçларĕç. «Литературная Россия» хаçатра ăна «Что останется после нас?» ятпа пичетлерĕç – авăнăн 10-мĕшĕнче. Хăшĕ-пĕри кÿреннĕ, уйрăмах чăваш хĕрачисем: «Геннадий Никандрович, эсир хамăра мĕскĕн кăтартмастăр-и?» Унта мĕскĕнлĕх çук – унта хуйхă та пăшăрхану.

Чăвашсене хампа кăмăлсăр пулнисенчен кая юратмастăп-ха. Куратăп эпĕ, хуйхăратăп. Кунта сисмесен те пулать – айккинчен пит курăнать. Эпир халĕ Мускавра чăваш ушкăнне пуçтарăнатпăр, калаçатпăр – 500–600 çын пухăнать. «Чăваша хăçан çак çитĕ-ши?» – тесе ĕмĕтленетпĕр. «Чăваша та çак çитсессĕнччĕ!» – тетпĕр.

Кунта хăрушлатса, тискерлетсе калани çук. Тăван çĕр-шыв вăл – килте эс хуça. Сан чĕлхÿ, сан аçу-аннÿ – хисеплĕ. Пуçлăхусем саншăн çунаççĕ, сана мĕнле те пулсан мăшкăл кăтартассăн, милици хутшăнать те суда илсе каяççĕ – никам та чăваш тесе хăртма пултараймасть. Çавăн пек çĕр-шыв кăна вăл – Тăван çĕр-шыв.

**И. Иванов:** «Националист» тесе айăплаççĕ вĕт-ха...

**Г. Волков:** 1937 çулта пирĕн «националистсене», сунарçăсем тытнă пек, пере-пере вăлернĕ – кунта пĕр националист та çук. Пирĕн национализм тени те вăл шовинизма хирĕç тăни кăна пулнă. Национализм нимĕн те пулман пирĕн.

Çав Милли, мĕскĕн, чăваш сăри пирки диссертаци çырнă. И.Д. Кузнецов, «националистсене» юратманскер, çав «националист»-Милли çинчен çырнинче пĕр тĕслĕх кăна илсе кăтартрĕ – «Чăваш сăри» ятлă диссертацн çырнă. Ку çав тери хăрушă национализм-ши?

Эсир ялпа çыхăннă пулсан, сисетĕр-и, сисместĕр-и – чăваш сăри епле начарланса пырать. Лайăх çуртсенче пурăнаççĕ те – салат шăрши кĕртесшĕн мар. Салата ăна кăмака çинче, кравать айĕнче кăна шăтарса, пысăклантарса тума пулать. Çĕнĕ кинсем киле кĕртмеççĕ ăна халĕ, ваттисен – вăй çитмест, сăри начарлансах пырать. Милли вара 28 тĕрлĕ чăваш сăри пирки çырса кăтартать – тата шырама ĕмĕтленнĕ. Сăмахран, эпир, анатри чăвашсем, юрай сăрине пĕлмен – вăл турисен сăри.

Çавăнпа шутлатăп та, пирĕн ĕмĕт вăл – Тăван çĕр-шывăмăра тупасси.

Эсир хăвăр та пĕлетĕр – поэт калашле, Тăван çĕр-шыва пуçлăхсем сутса ячĕç. Эсир пĕлетĕр – пуçлăхсем лайăх пурăннă. Чăваш хăйĕн ĕмĕрĕнче пуçлăхсене капла лайăх пăхаяс çукчĕ. Мускав пăхнă.

Ман шутпа, революциччен чăвашсен Тăван çĕр-шывĕ пулнă пулĕ тетĕп – çав Чĕмпĕре пула. И.Я. Яковлев патша пек пулнă. Ăна чăваш турри тенĕ. Унăн шкул автономийĕ пирĕн университет автономийĕнчен пысăкрах пулнă. Мĕн чухлĕ вырăс, ирçе-мăкшă илессине хăй палăртнă. Ăна тав туса тăнă – 300 яхăн вырăс хресчен ачине вĕрентсе кăларнă та. Чăвашран та чи лайăххисене пуçтарнă. Ман шутпа, ун чухне Тăван çĕр-шыв шăрши пулнă.

Халĕ Тăван çĕр-шыв туянас ĕçре, ман шутпа, «Хыпар» та нумай тума пултарать. «Коммунизм ялавĕ» тăвас çукчĕ – вăл тĕнче тăрăх кăна

салатса яма пултарнӑ. «Хыпар» вара чӑвашсене Тӑван ҫӗр-шыва каялла тавӑрма пултарать – тӑван хаҫат пулса тӑтӑрччӗ пӗтӗмӗшпех.

<. . .> **А. Леонтьев:** Енчен те Иван Яковлевич Яковлев чӑваш литература чӗлхине икӗ диалект – анатрипе вирьял – никӗсӗ ҫинче туман пулсассӑн, пӗр диалект, сӑмахран, анатри никӗсӗ ҫинче ҫеҫ тунӑ пулсан, пирӗн чӑвашсем икӗ халӑх пулатчӗҫ. Ирҫе-мӑкшӑ пек. . .

**Г. Волков:** Ҫапла...

**А. Леонтьев:** Кунта пирӗн вирьял та, анатри чӑваш та пур. Эпир пӗр-пӗрне питӗ лайӑх ӑнланатпӑр. Ман шутпа, Яковлев калама ҫук пысӑк ӗҫ тунӑ.

**Г. Волков:** Пӗрлештерме пултарнӑ.

**А. Леонтьев:** Православи пирки, чӑнах та, иккӗленекенсем нумай халӗ. Пӗр инкек пур: тӗпчевҫӗсен Яковлев еткерӗпе питӗ нумай ӗҫлемелле.

**Г. Волков:** Пехилӗнче вырӑссем пирки ырӑ, ӑслӑ халӑх тесе калани вӑл тӗрӗс-ха. Иван Яковлевичӑн урӑх сӑмахӗсем те пур. Эпир Парижа илтӗмӗр тет, Константинополь патӗнче вилтӗмӗр тет, Раҫҫее чи шанчӑклӑ салтаксем тӑратрӑмӑр тет. Анчах вӑл пирӗн шанчӑка тӳрре кӑларайманӗ, пире, хӑйӗн чӑн ывӑлӗсем туса, хӑй шайне ҫӗклеймерӗ тет. Ӑна та кӗртрӗм эпӗ кӗнекене. Иккӗлле вӑл. Хӑш чухне вӑл ҫапла калатчӗ тет: «Моисей пек, ертсе тухам... Сахалина каяр. Пӗтереҫҫӗ». Ку вӑл – документланӑ шухӑш. Вӑл хӑй те чӑтмалла мар ПЫСӐК ҫын пулнипе ҫуннӑ...

**А. Леонтьев:** Темиҫе ултавран пӗрне, пӗчӗкреххине суйласа нлнӗ...

**Г. Волков:** Ҫапла. Ун урӑхла май та пулман пулӗ.

**И. Иванов:** Геннадий Никандрович, пирӗн авалхи чӑваш тӗнӗпе пурӑнакансем те сыхланса юлнӑ. Уйрӑмах Самар енче. Унта халӗ пирӗн тӗпчевҫӗсем те, ҫыравҫӑсем те, иттисем те кайса ҫӳреҫҫӗ. Этнопедагогикӑпа ӗҫленӗ май вӗсене тӗпченӗ-и эсир?

**Г. Волков:** Тарӑн тӗпчемен. Манӑн тӗпчеме те юраман. Эпӗ ҫынсем ҫырнисемпе ҫеҫ усӑ курнӑ. Ман шутпа, Петр Владимирович Денисовӑн «Чӑваш тӗнӗ» кӗнеки – лайӑх кӗнеке. Ун пек тарӑн тӗпчемен. Паллах, Пихампарсене пӗлетӗп... Вӗсем ача туррисем. Хамӑр турӑсене пӗлетӗп-ха.

**Ю. Михайлов:** Эсир – педагог, чӑваш хӑйӗн ачине мӗнле пӑхса ӳстернине лайӑх пӗлетӗр. Калӑпӑр, йӑвашлӑх. Ман шутпа, чӑваш ҫыннин характерӗнчи йӑвашлӑха пӗтерсе пымалла. Пӗтермесен эпир Анӑҫ, тӗнче шайне хӑпараймастпӑр. Геннадий Никандрович, мӗн тумалла пирӗн, чӑваш халӑхӗн, хӑюллӑ пулас тесен? Воспитани ӗҫӗнче те, пур енӗпе те.

**Г. Волков:** Хам та пит йӑваш. Именӳллӗ. Халь те пуҫлӑхсен алӑкӗ умӗнче чарӑнатӑп, сывлӑш ҫавӑратӑп та шаккаса кӗретӗп. Хӑраса каймалла – хӗр те йӑваш. Ывӑл йӑваш ӳсет. Эпӗ хамра йӑвашлӑха ҫӗнтереймерӗм. Ӑс-тӑн кӗрешӗвӗнче пулсан хӑюллах калаҫатӑп-ха. Иван Яковлевич шутланӑ тӑрӑх, ҫав йӑвашлӑх пурри, хирӗҫӳ ҫуккиех хамӑра упраса хӑварма пулӑшнӑ пулӗ.

Акӑ пӑхӑр-ха... Эп ҫыртӑм та – мана пичетлеме килӗшмерӗҫ. Ют ҫӗр-шывра пичетлемелле тетӗп эпӗ ӑна. «Московские новости» пичетлесе кӑларчӗ – «Горячие точки», наци хирӗҫӗвӗсем ҫинчен. Эпӗ вӗсем патне ҫитрӗм: «Кроме горячих точек есть холодные, мертвые точки, потому что национальное чувство раздавлено. Может быть, более трагично, катастрофично положение моего народа?»

Эсир курнӑ пуль Говорухин ӗҫне – «Так жить нельзя». Унта эпир вӗт. Унта – Канаш. Эпӗ ун патне ҫыртӑм – хуравламарӗ. Унта пире таптаса тӑкнӑ. Эпир телейсӗр халӑх. Суймасӑр тунӑ ӑна. Халь мана лару-тӑру начарлансах пынӑн туйӑнать. Вырӑссен те, вырӑс мар халӑхсен те агрессивлӑхӗ ӳсет. Хӑйсен ырлӑхӗшӗн чӑрмав тухнӑн туйӑнать вӗсене. Хамӑр эпир иттисемпе тан пулсассӑн, вӗсем хӗсӗрлӳ тӳсессӗн туяҫҫӗ.

Кашни килмессерен сирӗн кунти лару-тӑру начарланса пынине куратӑп. Те чун ыратнипе, ӑҫта кӳрентернисене шутласа ҫӳретӗп. Хаҫат илнӗ ҫӗрте 3 пусшӑн кӳрентерчӗҫ. Пасарта. Ҫӳретӗп-ҫӳретӗп те, пӗр 2–3 сехетре хамӑра кӳрентернӗ тӗслӗхсене 7–8 кӑна шутлатӑп. Хирӗҫ кӳрентерӳ сӑмахӗ вара пӗрре те илттермен.

Вырӑсланнисем, вырӑс облаҫӗнчен килнисем кунта вырӑс облаҫӗсенчинчен лайӑхрах пурӑнаҫҫӗ – туяҫҫӗ. Эпир начар конкурентсем, йӑваш. Эпир вӗсене хамӑртан маларах ырӑ тӑватпӑр.

Иван Яковлевич, ак, йӑваш ҫын пулман ӗнтӗ. Кинӗпе юратнӑ аслӑ ывӑлӗ калаҫса пынӑ чухне, чӗнмесессӗн, сывхармастчӗ тет. Хыҫалтан лӗкӗш-лӗкӗшлетсе утса пыратчӗ тет. «Атте, пӗрле пыр-ха», – тесен савӑнсах юнашар пыратчӗ тет. Те вӑл пирӗн тахҫантан пыракан аристократизм. Тен, вӑл йӑвашлӑх та мар-и? Вырӑсла каласан, «нахальство» текенни ҫук ӗнтӗ пирӗн.

**Ю. Михайлов:** Вара чӑваш хӑй пӗтиччен ех ҫавӑн пек пулӗ-ши?

**Г. Волков:** Хусанкай та ҫаплах калатчӗ – ҫӗрле пырса кӗретчӗ ман пата. Эпӗ ӑна йӑпататтӑм. «Пӗр 100 пин юлсан, авалхи грексем пек, ҫӗкленсе кайӑпӑр-ха теттӗм». Те эпир пӗрлешӗнменрен, пӗрлешӳлӗх туйӑмӗ ҫукран-ши ку? Ман шутпа, хальхи тапхӑр – пирӗн юлашки шанӑҫ. Эпир ҫакӑнта сухатрӑмӑр тӑк ҫухалатпӑр...

**А. Аслут:** Геннадий Никандрович, ман ҫакна калас килет. Эпир хамӑр халӑхӑн паянхи, иранхи кунне Иван Яковлевич ячӗпе ҫыхӑнтарни вӑл питӗ тӗрӗс. Ас тӑватӑр пулӗ, 50-мӗш ҫулсенче пӗр ушкӑн питӗ Яковлева тапӑннӑччӗ. Вӗсен тапӑнмалли пӗртен пӗр сӑлтавӗ ҫакӑ пулнӑ: Яковлев – миссионер. Яковлев ун чухне ирӗксӗртен тӗн литературине куҫарттарнӑ. Унӑн халӑха ҫырулӑх памалла пулнӑ. Паянхи кун ҫакӑн ҫине урӑхла пӑхмалла пулӗ? Ман шутпа, вӑл ун чухне тӗрӗс тунӑ.

**Г. Волков:** Халӗ Мускавра, вырӑс интеллигенцийӗ хушшинче, уйрӑмах вырӑс художникӗсен тата ытларах хӗрарӑм-художниксен хушшинче, Иван Яковлевича ҫветтуйсен шутне кӗртесшӗн тӑракан юхӑм пур. Канонизаци ирттересшӗн. Ытларах – вырӑссем. Вӗсем унран тӗлӗнеҫҫӗ. Ман шутпа, 1998 ҫулта канонизаци тӑваҫҫех пулӗ. Кирек мӗн те лайӑх. Коммуниста ҫеҫ кӑларма ҫук ӗнтӗ ӑна халӗ.

**<...>**

**Т. Ильина:** Мускавра пурӑнатӑр пулсан та республика хаҫачӗсене вуласа пыратӑр пулӗ-ха...

**Г. Волков:** Вулакалатӑп. «Советская Чувашире», «Молодой коммунистра» чӑваша хирӗҫ питӗ сӗмсӗр, лайӑх мар япаласем пулчӗҫ, хӑраса каймалла. Ӑнланмасӑр, мана хирӗҫ сиксе тухрӗҫ: «Халӑх йышӗпе халӑха пӑтраштарма юрамасть...»

Пирӗн вӗт пӗртен пӗр ҫӗр-шыв. Пирӗн ниҫта та урӑх ҫӗр-шыв ҫук. Вырӑсшӑн, ҫурчӗ пулсан, кунта килсен те – тӑван ҫӗр-шыв. Хура мар тӑпраллӑ ҫӗр-шывӗ те вӗсен. Кирек ӑҫта кайсан та. Пирӗн вӑл – пӗртен пӗр. Пирӗн урӑх ниҫта кайса кӗме ҫук. Ку пӗтрӗ пулсан эпир те пӗтетпӗр. Ҫавна ӑнланни кирлех.

Ҫӗнӗ Шупашкартан ҫамрӑк хӗрачасем ҫырчӗҫ. Эпир кунта вырӑс культуришӗн кӗрешетпӗр теҫҫӗ. Вырӑс культуришӗн кӗрешме кай эсӗ Новгород облаҫне. Кай Омск облаҫне. Мӗншӗн вырӑс культуришӗн кӗрешме кунта килмелле? Культурӑллӑ ҫын вӑл маларах хӑй культурӑллӑрах пулать. Хӑйсен культура ҫукки палӑрать. Вӗсем, хӑйсене тӳрех ҫӳле хурса, пире культурӑллӑ пулма вӗрентесшӗн.

Вырӑссемшӗн, ман шутпа, чи хӑрушши – халӗ хӑйсене чи вӑйлӑ парӑннӑ халӑхсем ухмаха юлаҫҫӗ. Коми, ирҫе-макшӑ, ҫармӑс, удмурт,

чăваш... Хăйсене чи паракăннă халăхсем ĕнтĕ. Вĕсем, каçарăр та, чи мĕскĕне юлмаллисем.

**Т. Ильина:** Хаçатра та, халăхра та Аслă Совет органĕсене суйланакан çынсем чăвашла пĕлни кирлĕ теççĕ...

**Г. Волков:** Эпĕ кун пирки пĕрре те иккĕленместĕп.

**Т. Ильина:** Хăш-пĕрисем юриех искусствăлла майпа пуçласа яраççĕ, тавлаштараççĕ теççĕ.

**Г. Волков:** Çук, çук. Чăваш çĕр-шывĕнче, автономи чăнах та пурах пулсан, ячĕшĕн кăна мар пулсан, чăвашпа тĕл пулакан çын чăн чăвашла пĕлмелле. Пĕлмесен – пуçлăх пулма пултараймасть. Кун пирки пĕрре те иккĕленместĕп. Вăл мăшкăлласа пурăнни кăна. Вĕсен чĕлхине пĕлмесен, хисеплемесен мĕнле ертсе пыратăн вара эсĕ?

Тепĕр тесен, тăмсай мар тăк, кунта пурăнасах тетĕн пулсан, мĕнле вĕренейместĕн-ха чăваш чĕлхине? Е эсĕ мана, манăн халăха хисеплеместĕн, е эсĕ – тăмсай. Вĕренме пулать вĕт-ха. Эстоние каятăп та – калаçу кĕнекипе пĕр-ик кун хушшинчех 3–4 е 7–8 пуплев вĕренетĕп. Эстонире 1400 ытларах чăваш. Таллинра пире клуб туса параççĕ, муниципалитет тÿрех 5 пин уйăрса парать. Çук, пирĕнни пек хăрушă вырăн ниçта та çук. Эсир пăхăр-ха, вырăссем хăйсене пирĕн патăрта мĕнле туяççĕ тата чăвашсем вырăс облаçĕсенче хăйсене мĕнле туяççĕ. Вырăссем пирĕн çине эпир вĕсем çине пăхнă пек пăхсан пирĕн нимле проблема та пулмасть.

Эпир вĕсене хисеплесе, юратса, сума суса... Пирĕн университетра та вĕренеççĕ, пединститута та пырса кĕреççĕ. Çын шайĕ пин çын çине шутласан вĕсем 2 хут нумай. Вĕсем, тĕрĕссипе каласан, патшалăх пире панă укçа-тенкĕ шучĕпех вĕренеççĕ, пире, тĕртсе, хĕррине кăларса пыраççĕ.

Эсир пăхăр-ха: Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ паян кунччен ишĕлсе выртать. Эпĕ «Литературная Россия» хаçатра çырнăччĕ – фашистсем те Ясная Полянăна кун чухлĕ çĕмĕреймен. Михайловскине те кун чухлĕ сиен кăтартман.

Яковлев шкулĕ – пирĕн сÿннĕ чун. Яковлев шкулĕ çакăн пек ларутăрăва кĕрсе ÿкни вăл эпир халăх пулма пăрахнине пĕлтерет пулĕ тетĕп эпĕ хăш-пĕр чух. Эсир панă ыйтăва пурнăçа кĕртмесен эпир халăх мар.

Терĕссипе каласан – 2 чĕлхе кирлĕ çĕрте ĕçлекенсене шалу та хушса тÿлемелле. Вырăссем, сăмахран, чăвашла пĕлеççĕ тĕк – 15 процент шалу хушса пар. Эпĕ ăна хамăн концепцисенче çаплах çыратăп: «Учителям двуязычным выплачивается поощрительная доплата».

Яковлев хăпартнă хыççăн, 1937 çултанпа, эпир анса-анса пыратпăр. Халĕ пирĕн хăпармалла. Атту вĕçне çитетпĕр. Пĕтсе ларнине эпир сисместпĕр те. Саккунсем лайăх, анчах пурнăçланмаççĕ. Тăван чĕлхе çинчен те начар мар. Пирĕн 1922 çултанпах чăваш чĕлхи вырăс чĕлхипе тан пулмалли саккун пулнă.

Чăвашсен кăмăл хавшаклăхĕ мана тĕлĕнтерет. Çавăнта йывăрлăх. Пирĕн хамăрăн сутăнчăксем нумайăй те хăрушă.

**А. Леонтьев:** Вырăса пĕртте тĕкесшĕн мар. Питĕ хĕрхенеççĕ...

**Г. Волков:** Çапла. Абдулатиповăн «Программа возрождения национальностей РСФСР» ятлă документ пур. 4 вырăнта вырăссене шеллесе çырнă. Репрессиленĕ халăхсене тата вырăссене йывăр-мĕн. Çавăн пекех – йывăр ĕнтĕ вырăссене. Репресси пулнă чухне чăвашсене Крыма кĕртмен, тутарсене шанман. Репресси тăваканни ытларах вырăс.

Эпĕ Крымра пурăнтăм. Хăçан халь унта пурăнакансем шухăшла пуçлĕç? Вĕсем тутарсене хăваласа кăларнă. Лешсем лайăх çуртсем туса лартнă – ачине кипкепе чĕркенĕ те тухса кайнă. Кунта килеççĕ те... пушă сăпкана хăйсен ачине хураççĕ, лешсем туса лартнă çуртри сĕтел хушшине лараççĕ, савăт-сапипе усă кураççĕ, кĕрпи-какайне тытса пĕçереççĕ... Ют сĕтел хушшинче, ют тирĕкрен яшка çисе лараççĕ. Ачи ют сăпкара. Халĕ вара унта таврăннă тутарсен пĕр начар шухăш та çук. Вĕсене халĕ çĕр çеç памалла. Чи начар çĕрсене параççĕ. Хăйсен çĕрĕ вĕт вăл...

Çав шая эпир те пырса ларма пултаратпăр. Совеç тенине мĕнле вăратмалла? Халĕ вĕсен ачисем, ют сăпкара ÿснисем, тутарсене пăвса пăрахма хатĕр. Хăрушă ку.

**А. Аслут:** Тăрăшсах патшалăх чĕлхине вырăс тата чăваш чĕлхи туни чăваш чĕлхине пăсни пулмарĕ-ши?

**Г. Волков:** Çапла. Вĕсем пĕр тан нихçан та пулма пултараймаççĕ. Чăваш чĕлхине уйрăм пăхмасан, иккĕш пĕрле пулсан, нихçан та пĕр тан пулма пултараймаççĕ. Пĕр тан тăвас тесен ăна патшалăх чĕлхи тумалла. Вырăс вăл Парижра та аптрамасть. Чăваш Чăвашра кăна чăвашла калаçать. Эп сирĕнпе килĕшетĕп.

Хамăр патăрта тата... Чăваш ялĕсен ик ят – чăн тата вырăсли. Пирĕн ял Акчел. Чиркĕве пула халĕ вăл – Булаево. Тахçанхи сăмах – Тăрăм – вăл пирĕн чăн-чăн ят, вырăсла вара – Сабанчино. Çавăн пек çĕмĕрсе пынă топонимикăна. Шупашкарта Тукас та пултăр. Эпир вĕт чăваш çеç мар, эпир ухмах халăх. Эпĕ çакна юратса калатăп. Яблочков, Пирогов урамĕсем... Вĕсем пĕр кун пулман кунта. Гладков ячĕпе вырăссем урам паман. Федор Гладков Сталин премине илчĕ те – пирĕн кунта тепĕр куннех урам ятне улăштарчĕç. Лешĕ вара кунта пĕр кун пулман, пĕр сăмах çырман. Ман шутпа, Ленин проспектне Яковлев проспекчĕ çумнех çыпăçтармалла.

**И. Иванов:** Хăвăра Шупашкарта хĕсĕрленĕ чухне обкомăн пĕрремĕш секретарĕ вырăс çынни пулнă. Вăл хăйсене мĕнлерех тытнăччĕ?

**Г. Волков:** Мана хĕсĕрлекенни Николай Анатольевич Вороновский пулман. Вăл питĕ тирпейлĕ тыткалатчĕ хăйсене . Вăл Александр Петровича [Петрова] каланă: «Вăл коммунист, коммунист ачи, мĕншĕн ăна çав тери хĕсĕрлетĕр, мĕн пур унта сирĕн?»

Вара виçĕ хут пултăм ун патĕнче. Ун патне кайнăшăн та Илья Павлович [Прокопьев] питĕ кÿреннĕччĕ.

3 хут пултăм ун патĕнче. «Сан докладна вуларăм, унта нимĕн те тупаймарăм», – тет. Чăвашсем хирĕçсе пурăннинчен тĕлĕнсе кайнă Вороновский.

Александр Петрович хăй каларĕ мана, ăна халĕ, тен, тунĕ те (эпĕ сире турă умĕнче каланă пек калатăп, улталаса курман): «Пожурили, ладно, но зачем же раздувать, зачем его на бюро тащите?» – тесе каларĕ тет Вороновский.

**А. Леонтьев:** Саккунсем ĕçлемеççĕ тетĕр. Мĕншĕн тесен влаçра халĕ те сире камсем хĕснĕ – çавсемех лараççĕ...

**Г. Волков:** Çавсем пĕтереççĕ. Мускавра та çавах... Чи хăрушши кунта . . . Аслă Советра – номенклатура. Унта национальноç çук. Чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи пултăр тесе 13 чăваш кăна сасăлани – хăрушă япала. Ку эпир пĕтес патнех çитнине палăртать.

<...>

**А. Леонтьев:** Пирĕнпе тĕл пулнăшăн, Геннадий Никандрович, пысăк тав.

**Г. Волков:** Итлеме кăмăл тунăшăн сире тавах. Лайăх пурăнăр.

*«Хыпар», 1992, кăрлач, 10.*

# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ХАЛĂХСЕНЕ, ТĔНЧЕРИ МĔН ПУР ЧĂВАШСЕНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хурăнташсем, тăвансем, пĕлĕш-тантăшсем! Хамăр йăх-несĕлĕн тĕнче тăрăх сапаланнă тĕпренчĕкĕсем!

Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕ йышăннипе 1992 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 8–9-мĕшĕсенче Шупашкарта Чăваш халăх Конгресĕ (Аслă пухăвĕ) иртет.

Пăлхавлă вăхăтсенче çакăн пек аслă пухусене халăх ĕлĕк-авалах тата XX ĕмĕр пуçламăшĕнче тăтăшах ирттернĕ. Кăçалхи Аслă пуху миçемĕш пулнине пĕлместпĕр, мĕншĕн тесен халăх ăсне упракан тăван çырулăха, тĕне, ăсчахлăха тăшман тĕпрен касса татма тăрăшнă, анчах Совет Союзĕ тенĕ çĕр-шыври пĕтĕм пурнăç йĕрки вуçех ылмашăннă чухне халăхпа пухăнса канаш тума вăхăт çитни уççăнах курăнса тăрать. Çынсем хăйсен хуçалăхри, экономикăри, политикăри, патшалăхри çул-йĕрне ăнланса илмесĕр çĕнĕлле йĕркеленÿ пулма пултараймасть. Халăхăн ытларах пайĕ пĕр шухăш-ĕмĕт тытса, пĕтĕм этемлĕх ырламалла пархатарлă тĕллевпе килĕшÿ тупса аталансан кăна чăваш халăхĕ хăйсене «ЧĂН ЧĔРĔЛТĔМ» тесе калама пултарĕ.

Çĕр чăмăрĕ çинчи нумай-нумай халăх паян хăйĕн историри кун-çулне, хальхи пурнăçне, малашнехи шăпине картса хаклать. Атăлпа Урал хутлăхĕнче, чăвашсем авалтанпах тĕрлĕ халăх – тутар, пушкăрт, çармăс, удмурт, мăкшă-ирçе тата вырăс, нимĕç, еврей, калмăк, ытти халăх çыннисемпе пĕрле тăванла-туслăн, ял-ялпа, ушкăн-йышпа пурăнакан çĕрте, нацисен ăнкарулăхĕ палăрмаллах çĕкленет, демократилле чăмăртанăвĕ вăйланса пырать.

Малтан ССР Союзĕнче тата Раççей Федерацийĕнче иккĕмĕшле шутланнă халăхсем хăйсен патшалăх суверенитетне, экономика, политика, культура аталанăвĕнчи ирĕклĕхне çĕнсе илме кăмăл туни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ утăм пулчĕ. 1990 çулхи октябрĕн 24-мĕшĕсенче Чăваш Республикин Аслă Совечĕ патшалăх суверенитечĕ çинчен деклараци йышăнчĕ. Рынок хутшăнăвĕсене йĕркеленĕ чухнехи пăтравлă-кризислă лару-тăрура çынсен социаллă интересĕсене **ЧĂН-ЧĂН СУВЕРЕНИТЕТ** кăна хÿтĕлесе хăварма пултарать.

Авалхи чăваш халăхĕ тĕнчери пĕтĕмĕшле çĕнелÿ хумĕнчен ниепле те пăрăнса юлма пултараймасть. Çавăнпа халăх пухăвне ирттерме палăртнă. Хăр-хаяр шăпа чăваш çыннисене тĕнче тăрăх сапаласа янă, çуралса ÿснĕ çĕр-шывран çуррине ытла хÿтерсе кăларнă, наци культурин çыхăнăвĕсене татнă. Тулай чăвашсем хайсен пĕрлĕхне, наци сăн-сăпатне çухатас çул çине лекнĕ. Вĕсем наци ăс-хакăлпа культура пурнăçне ырлăх-пурлăх кÿме пăрахнă, тăван халăх йăли-йĕркине манса пыраççĕ, куç умĕнчех тымарсăр тĕрке курăк пек тăрса юлаççĕ: тăван çĕр-шывсăр, çырулăхсăр, ятсăр-сумсăр, чыссăр çынсем пулса каяççĕ. Çакă пирĕн чуна касса ыраттарать.

Кашни халăхах, çĕр çинчи мĕн пур чĕрĕлĕх пекех, йăх тăсма, малалла аталанма тăрăшать. Аталанăвăн пурнăç тĕшши – ăрулăх сыпăнса пынинче. Малашлăха çухатнă харкам этем те, пĕтĕм халăх та сÿтĕлсе каять, хăйсене хăй сÿнсе пĕтет. Чăваш çынни ĕмĕрсен историйĕнче инкек-синкек, вăрçă-харçă, асап-пусмăр пайтах курнă. Чăтăмлăхпа ĕçченлĕх, тирпейлĕхпе ăс-хакăл ăна пĕр туйăмпа чăмăртаса тăнă. Вăл хăйĕн никамăнни пек мар тĕнне, чĕлхине, йăли-йĕркине, тĕрри-эрешне, хутшăнусен тытăмне аталантарса пыма, паянччен упраса хăварма пултарнă. Çак пуянлăх еткерне иксĕлтерме юрамасть, ăна татах пуянлатса капăрлатасси, ăна çамрăксене вĕрентсе хăварасси çинчен халĕ питех те хытă шухăшламалла. Çавăнпа паян чăвашсен, ытти кÿршĕ-аршă халăхсем пекех, тăван чĕлхене, шкула, йăла-йĕркене чĕрĕлĕх кĕртсе аталантарас ыйтăва татса памалла. Кÿршĕри халăхсенчен чĕлхе те, тĕн-ĕненÿ те, йăла-йĕрке те хамăрла расна пирĕн. Урăх нихăш хурăнташпа та куçарусăр калаçма май çук чăвашăн. Çак расналăх халăха тата сыхăрах та вичкĕнрех пулма, хуçалăхпа экономика, ăс-хакăлпа культура çыхăнăвĕсене, тăванлăх-хурăнташлăх тымарĕсене çирĕплетсе аталантарма хистет. **Чăваш халăхĕн чĕрĕлĕвĕпе çĕнĕлĕхĕ наци чăмăртанăвĕ урлă çеç пулма пултарать.**

Чăваш халăх конгресĕ иртнĕ пурнăçа та, паянхипе ыранхи çул-йĕре те асра тытса ĕçлĕ. Халăхăн Аслă пухăвĕнче хамăрăн малашнехи пĕрлĕхĕн тĕп ыйтăвĕсем – истори, чĕлхе, культура, тĕнчери хутшăнусем çинчен халăх мĕн шухăшланине пĕтĕмлетсе пăхăпăр.

Чăваш Республики – чăваш халăхĕн культурине, чĕлхине, ăс-хакăлне, йăлисене аталантармалли, туптаса якатмалли пĕртен пĕр хамăрăн Тăван çĕр-шыв, чăвашсен тĕнчери пĕртен пĕр патшалăхĕ. Чăваш халăхĕн малашлăхне çакăнта çеç çине тăрса упраса хăварма май пур. Чăваш Республикин суверенитечĕ кăна халăха çĕр çинчен пачах çухаласинчен сыхласа хăварма, йĕркеллĕ те тулăх пурăнма ирĕк парĕ. **Çавăнпа Чăваш Республикин суверенитетне пурнăçа кĕртесси – пĕтĕм чăвашсен таса тивĕçĕ.**

**Чăваш çĕрĕ çинче чăвашăнах йĕрке тумалла**. Пирĕн пахчана аякран килсе сухаласа памĕç, пирĕн урам çÿп-çапне кÿршĕ халăхран килсе шăлса тасатмĕç. «Кам та пулсан тăвĕ-ха, манран ăслăраххи сахал-им?» – тесе, эрех кÿпнипе е пăлахая пенипе мала каяймăпăр.

Авалтан пыракан тачă тăванлăх çеç пире пăтравлă саманара пыл тăвакан вăйлă вăлле пек килĕштерсе ĕçлеме пулăшĕ.

**Тăван-хурăнташ!** Пирĕн халăх хамăр республикăра та, ытти çĕрсенче те ытти халăхсемпе хирĕлсе, ыттисене пусмăрласа е ыттисене пăхăнса пурăнман. Чыслăх, килĕшÿлĕх, танлăх саккунĕсене пире мăн асатте-кукаçисем çĕр-пин ĕмĕрлĕхе парса хăварнă. Çав саккунăн пурте пĕлекен пĕр тивĕçне – **«Чăваш ятне ан çĕрт!»** тенине – паян пирĕнтен самана хăй ыйтать.

Аслă пуху тăкаксăр-чăрмавсăр пулмасть. Пухăва йĕркелекен Комитет республикăри тата тулай чăвашсене çапла ăнлантарса калать: Аслă пухăва йĕркеллĕ, усăллă, чыслă ирттерме пурин те хастар хутшăнас пулать. Конгресс фондне кам мĕн чухлĕ пулăшу пама пултарать, тархасшăн, пăрăнса ан тăрăр: Чăваш социаллăх банкне Конгресс ячĕпе МФО 286017 рЕс 200700507 шутпа хăвăр пултарнă чухлĕ укçа-тенкĕ куçарса парăр. Мĕн чухлĕ хывнинчен ытларах халăх хисепĕ, ăнланулăхĕ хаклă. Пĕрле сурсан кÿлĕ пулĕ.

**Чăваш Республикин чăвашсем!** Юпа уйăхĕнче – ваттисене асăнмалли кунсенче – тăван çĕре аякри йăхташăмăрсем делегат пулса йышлăн килеççĕ. Вĕсемпе пĕрле делегата суйланман тăванăр-хурăнташăрсене те хăвăр пата хăнана чĕнме ан манăр. Ан тив, республикăра кашни хуçалăхра, учреждениере, организацире, хулара, ялта, шкулта, клубра, урамра, çемьере **Малашлăх, Тăванлăх, Асăну уявĕ пултăр.**

Чăвашлăх туйăмĕ пирĕн халăх чун-чĕринче сивĕнменех тесе шутлатпăр. Кам асаттесемпе кукаçисен çĕрĕ пирки, хамăрăн малашнехи шăпа çинчен шухăшлама манса кайман, çав пирĕн пата, Шупашкарти Советсен çуртне, хыпар яма тăрăштăр.

**Чăваш ачи, сассуна пар!**

Чăваш наци конгресне
йĕркелесе ирттерекен комитет.

## ЧĂВАШĂН ТУСĔ ÇУК...

Эпир халĕ калама çук кăткăс вăхăтра пурăнатпăр. Тепĕр чухне мĕн пулса иртнине чухласа илме те йывăр. Унта та кунта халĕччен курман пулăмсем. Лайăххи те пур, япăххи те тĕл пулать. Анчах çакă паллă: халăхсем хăйсем çине урăхларах пăхма пуçларĕç, чăн-чăн ирĕклĕхпе пĕр танлăх çулне шырама тытăнчĕç. Чылайăшĕ хăй патшалăхне туса хучĕ, уйрăм çĕр-шыв статусне илчĕ. Вĕсен президенчĕсем ют çĕр-шывсене тухса çÿреççĕ, хăйсене ООНра та палăртаççĕ.

Чăвашсем çинчен кам та пулсан пĕлет-ши, ун пирки кам та пулин шутлать-ши? Çук пуль. Пире паян та асăрхамаççĕ-ха. Раççей Президенчĕ те курмасть. Вăл Хусана кĕрсе тухрĕ, Чĕмпĕре те, Чулхулана та... Анчах Шупашкар валли вăхăт тупăнмарĕ.

Совет Союзĕ те саланса кайрĕ. Апла пулин те халăхсен хушшинчи çыхăнура урăхларах юхăмсем палăрма пуçларĕç. Çакă вăл — çĕнĕ тус-сене тупасси. Славянсем хăйсене майлă çул шыраççĕ. Мусульмансем те пĕр-пĕрин еннелле туртăнаççĕ — Турци, Иран, Афганистан таранах. Угро-финсен те хăйсен пĕрлешĕвĕ. Апла пулсан пирĕнпе юнашар çармăссемпе мăкшăсем пĕччен мар. Чăваш кăна пĕччен. Унăн ниçта та тус çук. Тĕн йĕркипе те, чĕлхерен те чăвашсем уйрăмрах тăраççĕ. Апла пулсан чăвашăн хăй çине шанасси кăна юлать.

Чăвашăн чăвашпа пĕрле пулмалла, пĕрлешнĕ халăх пулса вăй илмел-ле. Эпир сахалăн мар. Чăваш çĕрне пайла-пайла урăх облаçсемпе республикăсене пани çеç чăрмав кÿрет. Карттă çине пăхсан чăваш ялĕсем Шупашкартан пуçласа Самар тарăн сарăлса выртаççĕ. Унтан та иртсе каяççĕ, пушкăртсем патнех çитеççĕ. Апла пулсан Атăл тăрăхĕнчи чăвашсене пĕрлештерсе тăракан уйрăм патшалăх тăвас шухăшра ним япăххи те çук. Çак ыйтăва халь хускатмасан та юрать текенсем те пур. Анчах халĕ тапратмасан хăçан хускатăпăр? Чăвашсем пĕтсе ларсан-и? Кунта нимĕн хăраса тăмалли те çук. Çакă вăл чăваш халăхĕн ĕмĕрхи ĕмĕчĕ. Унтан çивĕч, унтан кирлĕ ыйту чăвашсемшĕн халĕ урăх пулма та пултараймасть. Çак шухăш вăл кашни чăваш пуçĕнче йÿçме пуçланă çĕпре пек чăшкăрса тăмалла, сÿнмелле мар.

Çын ăсĕпе нумаях пурăнаймăн тенĕ ваттисем. Чăваш хăй ăсĕпе пурăнма хăçан вĕренсе çитĕ-ши?

Кам кăна вĕрентмест пуль паян чăваша. Капла ан тăвăр, ун пек юра-масть теççĕ. Чăваш ĕненет. Сире президент мĕн тума кирлĕ вара тесен — чăваш иккĕленме пуçлать. Суйлава ан кайăр тесен — итлет, килте ларать. Чăваш çул варрипе хăюллăн утма вĕренсе çитеймен-ха. Хăйне хăваласа çитнине туйсанах айккине пăрăнать те иттисене çул парать, хыçалтан пăхса тăрса юлать. Çĕр пайланă çĕре те, телей валеçнĕ çĕре те вăхăтра çитеймест вăл.

Паян та ĕлĕкхи майлах. Приватизаци пуçланчĕ. Хуласенчи заводсене, лавккасене хăй çине илекенсем хушшинче чăвашсем çукпа пĕрех. Мĕншĕн тесен чăваш хăй çĕр-шывĕнче те хуçа мар. Вăл яланах тарçă шутĕнче пулнă, хура ĕçпе хуçăлнă. Ăçтан хăюлăх тупăнтăр-ха ун?

Çук ĕнтĕ. Чăвашсем, мĕнле пурăнатăр-ха эсир тесе ыйтакан пулман та, пулас та çук. Чăваш вăл яланах пĕччен. Ун шанăçĕ те, пуласлăхĕ те хăйĕнче çеç. Халăха вăй илме пĕрлĕх кирлĕ.

Кунта пĕрлешсе канашлани питĕ вырăнлă пулассăн туйăнать. Пĕтĕм чăвашсен конгресне питĕ шанатăп.

Тăван халăхшăн пĕтĕм вăя хурса, вăхăта шеллемесĕр ĕçлер, пĕрне-пĕри алă парар, пĕрлешер.

Анатолий КИБЕЧ.

*«Хыпар», 1992, çĕртме, 20, 120 №.*

## БОЛЬШОЕ НИМЕ ЧУВАШСКОГО НАРОДА

*Корреспондент газеты «Советская Чувашия» беседует с первым заместителем председателя оргкомитета по подготовке и проведению Чувашского национального конгресса А.П. Хузангаем.*

**– Прежде всего хотелось бы узнать, каков будет статус Чувашского национального конгресса, какие цели и задачи преследует форум?**

– ЧНК должен стать высшим представительным органом, который выражает политические и национально-культурные интересы всего чувашского народа, способствует консолидации чувашской нации, выступает за соблюдение прав и свобод личности в соответствии с нормами международного права независимо от места проживания чувашского населения. Являясь общенациональным форумом всего чувашского народа, ЧНК сможет в полной мере ставить вопросы, связанные с реализацией права чувашского народа на самоопределение, в органах государственной власти и управления Чувашской Республики, а также на национально-культурную автономию в местах компактного проживания чувашей в республиках и областях Урало-Поволжья, Сибири, странах СНГ и так далее.

Национальная консолидация – это важный этап возрождения и обновления национальной жизни чувашей. Это есть внутреннее сплочение на основе общности интересов, языка, ценностей, исторического прошлого. Обрести национальное единство особенно важно в период нынешнего жестокого социально-экономического кризиса, который изматывает физические и духовные силы людей и приводит общество к утере нравственности, культурных традиций. И в этом естественном желании единства чувашей, проживающих здесь в республике, и почти миллионной чувашской диаспоры, разбросанной волею судеб по всем окраинам шестой части земного шара и за её пределами, нет национального эгоизма, нет противопоставления другим народам. Это единство чувашской нации исходит из светлого чувства родства (тăванлăх), одного из наиболее глубоких понятий чувашской народной философии. Слово «тăван», может быть, наиболее частое в чувашских народных песнях. Оно показывает степень особого уважения при обращении фактически к неродственнику. По слову поэта Васьлея Митты, семнадцать лет проведшего в застенках сталинского ГУЛАГа, и наиболее глубоко ощущавшего эту категорию тăванлăх:

*И мĕн пуян, тăванăм? Халăх пуян.*
*Унсăр пуçне кама пуç таян.*

ЧНК смог бы устанавливать и развивать связи со свободными демократическими движениями в СНГ и за рубежом, а также представлять интересы чувашского народа в международных неправительственных организациях типа Генеральной Ассамблеи ОННН (Организации непредставленных народов и наций), Ассамблеи тюркских народов и т. д.

**– Иногда можно услышать высказывания о том, что Конгресс созывается для конфронтационных целей. Мол, националисты пытаются повергнуть нас на «татарскую тропу», чтобы отделиться от России и что якобы всем этим «дирижирует» бывшая партноменклатура, жаждущая реванша?**

– Полагаю, что ни о какой конфронтации не может быть и речи. Если некоторые, считающие себя демократическими, общественные объединения ЧР попытаются использовать этот общенациональный чувашский форум для мелких политических провокаций и активизации вяло текущей деятельности, тем хуже для них. Перед чувашской нацией, как и перед другими народами СНГ, России, стоит слишком много острокричащих проблем. Их нельзя не замечать, и они требуют безотлагательных решений.

Это и первоочередные меры по реализации государственного суверенитета Чувашской Республики в полном объеме. Это и проблема сохранения культурного и природного наследия, оздоровления социокультурной и экологической среды жизни человека, защита национальной культуры как самоценности (особенно в условиях рыночной экономики), включение в общественную практику чувашского языка. Это и проблема усвоения чувашского языка новыми поколениями, формирования национального самосознания, которое органично бы сочетало систему ценностей космополитизма и собственно чувашскую духовность. Это и проблема осознания того, что чувашский народ получил возможность стать хозяином своей судьбы и именно от единства усилий зависит его будущее.

Для чувашской молодежи надо поставить вопрос о воссоздании системы мотивации труда, которая должна основываться на народных принципах трудовой этики и морали. В процессе культурного возрождения важную роль должна занять национальная школа. Становление чувашской национальной школы на принципах этнопедагогики – веление времени. Так или иначе, перечисленные далеко не в полном объеме «узлы» проблем связаны с воспроизводством чувашской нации, её жизненности в нынешних нелегких условиях. Думаю, что все эти вопросы на уровне концепций или конкретных законодательных предложений могли бы быть обсуждены и поставлены в ходе работы Чувашского национального конгресса путем организации специальных «круглых столов» (к слову сказать, во время Всемирного конгресса татар работало пятнадцать таких «круглых столов»).

Что же касается «татарской тропы», я считаю, что каждый народ имеет свободу выбора своего пути в общемировом социально-политическом контексте. Народ Татарстана сделал свой выбор во время референдума 21 марта сего года, выразил свою волю твердо и решительно, и поэтому надо с уважением относиться к этой политической реальности.

*Бывшая номенклатура в созыве ЧНК абсолютно ни при чем. С нее достанет и бывшего ЧОКЦа, который она на скорую руку организовала в декабре 1989 года с целью расколоть национальное движение. И надо сказать, что своей цели она частично добилась.* Правда, ей и самой досталось на орехи от бывшего председателя этой организации, но это уже после того, как ситуация резко изменилась, и многие партийные функционеры оказались не у дел, либо кинулись «прихватизировать», торговать и т. д. Кроме того, особенность чувашской компартократии заключалась в том, что она особенно рьяно боролась против малейших признаков пробуждения национального самосознания, против собственного народа. Впрочем, времена меняются...

**– В республике уже есть опыт проведения подобных акций. Вспомним мероприятия, проведенные под эгидой ЧОКЦ. Например, 1-й Всечувашский съезд женщин в 1991 г. Впечатления остались, мягко говоря, не очень хорошие. Делегаты говорили обо всем и ни о чем конкретно. Мало кто помнит, какие решения там были приняты. Очевидно, оргкомитет думает и о содержательной стороне конгресса?**

– Я бы за точку отсчета и сравнения взял не те мероприятия, которые проходили под эгидой бывшего ЧОКЦ, наподобие Всечувашского съезда женщин, а, например, Общечувашский национальный съезд, который собрался 20–28 июня 1917 года в Симбирске (или даже можно вспомнить начало августа 1906 года, когда вблизи того же Симбирска также состоялся Чувашский национальный съезд). Особенно активно такого рода форумы собирались в 1917–1918 гг., что вполне закономерно, ибо в то «смутное» время шло напряженное осмысление будущего национально-государственного устройства Чăваш Ен, шли острые дебаты между разными политическими силами – чувашскими эсерами, представителями Крестьянского союза и духовенства, учительской интеллигенцией и чувашскими военными организациями. Тогда на этих собраниях была сформулирована идея независимой чувашской государственности и национальной консолидации, обсуждалась текущая политическая ситуация и была намечена перспектива на будущее чувашской нации.

При всех различиях нынешнее время очень похоже на то «время бури и натиска», когда начался процесс национально-государственного строительства, подбирались национальные кадры, формировалось новое сознание национальной интеллигенции. Этот процесс был продолжен и в советское время, уже после октября 1917 года, когда еще были возможны на протяжении одного десятилетия, хотя и до определенного предела, политический плюрализм, инакомыслие и свобода творческого самовыражения, шло глубинное осмысление истории родного народа, неплохо развивалась чувашская гуманитарная наука в целом. Была взята ориентация на традиционную культуру своего народа и общецивилизационные ценности и достижения. Этот период, правда, длился недолго и затем наступила тоталитарная эпоха с её усредненной «общесоветской» культурой, которая развивалась по известной абсурдной формуле: «социалистическая по содержанию, национальная по форме». То есть, как бы предполагалось, что у национальной культуры нет своего содержания.

ЧНК должен по-новому поставить вопрос об уникальности чувашского культурного наследия, как одного из древнейших тюркских народов, прошедшего сложный и трагический исторический путь, однако сохранившего свой язык и пока еще окончательно не утратившего ориентиры. Да, многие ценности были потеряны нами. Бедой последнего времени явилось и то, что духовный и культурный потенциал всей чувашской нации не был востребован. Чувашский язык и культура развивались относительно нормально только в узких рамках Чувашской автономии, а чувашская диаспора перестала «поставлять» писателей, художников, композиторов – национально-культурное «поле» за пределами республики перестало давать всходы, почва оскудела, да и о чем говорить, если там во многих местах вообще не преподавались чувашский язык и литература, национальные школы закрывались, а чувашское население не имело (и не имеет до сих пор) элементарных возможностей приобщения к художественной жизни чувашской нации, не имеет каналов информации. А ведь до 1917 года и после чувашское Урало-Поволжье дало многих видных деятелей – классиков чувашской литературы, например, основоположника чувашского театра и кино Иоакима Максимова-Кошкинского, идеолога национального возрождения и видного политика Мĕтри Юмана и других.

В 20–30-е годы в Самаре, Уфе, Симбирске, Казани существовали средние и даже высшие чувашские учебные заведения, издавались книги и периодика на чувашском языке, работали театры. Я уже не говорю о прославленной Симбирской чувашской учительской школе, руководимой И.Я. Яковлевым, патриархом чувашского народа в деле просвещения. Что касается последней, до сих пор нет реальных сдвигов в деле восстановления её в статусе чувашского педагогического заведения. От имени ЧНК следовало бы принять специальные обращения в адрес органов государственной власти и управления Башкортостана, Татарстана, Ульяновской и Самарской областей, Российской Федерации о необходимости принятия специальных мер по преподаванию чувашского языка в школах, подготовке кадров учителей, развитию сети чувашских библиотек, созданию реальных возможностей удовлетворения национально-культурных интересов чувашского населения, которое суммарно насчитывает только на этих четырех территориях полмиллиона человек.

Проблема национальных прав чувашской диаспоры будет одной

из важнейших в содержании нашего форума. Чтобы дать новый импульс развитию целостной чувашской культуры, необходимо подготовить условия, которые позволили бы задействовать генофонд всей чувашской нации, а не одной только её половины.

**– Как известно, среди чувашской интеллигенции сегодня существуют различные течения и группировки. В связи с этим некоторые деятели культуры высказывают опасения, что ЧНК может превратиться в очередное сведение счетов, или прогнозируют срыв назначенного форума.**

– Честно говоря, в среде творческой интеллигенции мне известна только одна группировка М. Юхмы и компании. Это наиболее, пожалуй, одиозная фигура во всем национальном движении. С другой стороны, существование разных точек зрения на процесс национального возрождения, обретения истинного национального достоинства без ущемления прав людей других национальностей вполне закономерно и естественно. Наверное, нам всем пора отойти от исповедания принципа обязательного единомыслия. Чувашская идея многогранна и имеет много аспектов, в развитие её каждый может внести свой вклад. Но чтобы развивать её творчески и содержательно, надо хотя бы в общих чертах представлять её эволюцию в разных социально-политических условиях, хотя бы начиная со 2-й половины 19-го века, представлять, как она отложилась в народном самосознании, в чувашской народной словесности и мировоззрении, в старой (дохристианской) чувашской вере.

Мы должны осознать, что в условиях социально-экономического кризиса, когда стихия коммерциализации и рост цен ставит под угрозу вообще само существование чувашской культуры, нужно оставить мелкое политиканство. Время требует быстрых, решительных действий и выработки новой политики в сфере культуры и национального развития. Действиям же должны предшествовать радикальные и в то же время взвешенные мысли. Хотелось бы, чтобы они urbi et orbi прозвучали на чувашском национальном конгрессе.

А потом надо осознать простейшую вещь. Чувашский народ исторически имеет такой опыт выживания и духовного сопротивления, что никакой творец-индивидуум не сравнится с ним. Меньше говорить «от имени народа», а больше делать трудной, черновой работы «во имя народа». Чувашский обычай ниме (толоки) так велит: «Нимене! Нимене! Тăванăмăрсем, нимене!»

**– Безусловно, многие делегаты впервые ступят на нашу землю. Нелишне, если им будут созданы условия для знакомства с городом и республикой. Дело, конечно, не сложное, но где взять для этого средства? Вообще, как будет решаться вся финансовая сторона организации этого мероприятия?**

– Учреждается специальный Фонд Чувашского национального конгресса, который будет аккумулировать все средства. Надо сразу сказать, что этот Фонд создается на постоянной основе, т.е. и в будущем при его посредстве будут реализовываться различные национально-культурные инициативы, поддержание связей с чувашской диаспорой, реализация целевых программ и проектов. Сам Чувашский национальный Конгресс тоже будет не разовым и парадным мероприятием, а постоянно действующим представительным органом с исполнительными структурами, в число которых будет входить и правление Фонда и его директор.

Делегатам ЧНК будет предложена обширная культурная программа, в частности, ко времени проведения общенационального чувашского форума будет приурочено празднование 100-летия со дня рождения двух чувашских композиторов-классиков – Степана Максимова и Федора Павлова, будут развернуты специальные экспозиции в Художественном и Краеведческом музеях, пройдут праздники в школах, библиотеках и т. д. А кроме того, при проведении такого рода форумов, когда собирается так много родных, основная работа – душевная – будет проходить в виде живого непосредственного общения делегатов, знакомства друг с другом.

Радость встреч на родной земле – это тоже немаловажно в наше время людской разобщенности и пониженного жизненного тонуса.

*«Советская Чувашия», 11.07.1992, №138.*

# ТĂВАНЛĂХ ТĂВАРПА ПИÇĔХНĔ...

*1992 çулхи юпа уйăхĕн 8–9-мĕшĕсенче Шупашкарта Чăваш наци Конгресĕ (ЧНК) иртет. «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ Алексей ЛЕОНТЬЕВ тата Чăваш халăх культура центрĕн правлени председателĕ, ЧНК йĕркелӳ комитечĕн председателĕн заместителĕ Виталий НИКИТИН (СТАНЬЯЛ) Конгреса хатĕрленес ыйтусемпе калаçнă.*

**– Тинех пăр тапранчĕ темелле-тĕр. Хăçантанпа калаçатпăр ку Конгреса пухасси çинчен. Вăхăт вара шăвать. Кая юлсан каю та шăтма пултарать. Перестройка вăхăтĕнче тата ГКЧП пăлхавĕ хыççăн чăваш наци ыратăвĕ-суранĕсем çинчен питĕ нумай калаçрăмăр. Сăмахран мала каяймарăмăр. Ăнланмалла: компартноменклатура влаçĕн саманинче урăхла пулма та пултарайман. Президент суйлавĕн тапхăрĕнче чăваш халăхне наци идейи тавра пĕтĕçтерсе çитереймерĕмĕр. Çапах та А. Хусанкай чи нумай сасă пухни, кивĕ тытăм чĕрĕлсе тăраймanни çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума май парать: халăх вăранать, хăйĕн шăпине вăл хăй çеç татса пама пултарнине ăнланса пырать. Парти обкомĕн пилĕпе йĕркеленнĕ ЧОКЦ панкрута тухни те наци ыйтăвĕсене татса памашкăн радикаллăрах утăмсем тумаллине çирĕплетет. Конгресс кунти чăвашсемпе тулай йăхташăмăрсене пĕр тĕллев тавра чăн-чăнах чăмăртамалли татăклă ĕç пултăрччĕ.**

**Калаçăва йĕркипе илсе пырас пулсан, малтан Конгресс мĕн иккенне ăнлантарса памалла пулĕ. Мĕншĕн Конгресс? Съезд, курултай, пуху мар?**

– Съезд – вырăсла, курултай – тĕрĕкле, Конгресс – латинла. Пĕлтерĕшĕ пурин те пĕрех: тĕл пулу, пуху, канашлу. Пуху тесе халăх пухăнса калаçнине, съезд е курултай тесе тĕрлĕ çĕртен шанса янă çынсен (делегатсен) пухăвне калатпăр. Конгресс тени тĕрлĕ çĕршывсенчен пухăннă делегатсемпе хăнасен форумне пĕлтерет. Паллах, Конгресс Америкăра парламент, Индире парти ячĕпе çыхăннă. Эпир вăл сăмахпа «аслă пуху» пĕлтерĕшĕпе усă куратпăр. Эпĕ «Чăваш халăх аслă пухăвĕ» тенĕ пулăттăм.

Халăхăн тĕрлĕ сийĕсене, вĕреннĕ çыннисене пухса аслă пухусем ирттересси пирĕн халăх историйĕнче ĕлĕкех пулнă. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче, Чăваш патшалăхне, çарне, партийĕсене çĕнĕрен йĕркелеме тытăнсан, ун пек пысăк пĕлтерĕшлĕ пухусем Чĕмпĕрпе Хусан хутлăхĕнче темиçе пулса иртнĕ. Ку Конгресс ыйтăвĕ 1988 çулта И.Я. Яковлев ячĕпе культура обществи тума тытăнсан тапраннăччĕ. Анчах, тĕрĕс палăртрăн, вăхăт тинех çитрĕ. Сăлтавĕ – яланхиех. Чăваш Республикин, тĕрĕссипе, КПСС организацийĕн, ертӳçисем тавра курăмсăр та мĕскĕн пулнинче. Халăх шăпи пирки анлă шухăшлама вĕсем нихçан та ăс та, чун ыратăвĕ те тупайман, хăйсен хĕсĕк ăнлавне шăнăçман ĕçе таптама, урăхла шухăшлакана вĕскĕртсе тыллаттарма питех те ăсталанса çитнĕччĕ. Турра шӳкĕр, çавăнпа хисепне те курайманрĕç.

Чăваш ячĕпе янтă пурăнакан «пиçнĕ-пиçмен большевиксемпе» Раççей партийĕсен кунти филиалĕсен хăш-пĕр ертӳçисем халĕ те Конгресс мĕн тума кирлĕ, ăна çитес çул е XXI ĕмĕрте ирттермелле тесе шавлаççĕ. Япалана тӳррĕн хакламалла: мĕншĕн ку е вăл этем тăван халăха ырă тăвасла калаçать, анчах ĕçне хирĕçле çапать? Пире пайтах минретнĕ, улталанă, сутнă. Çук, çук теекен куçĕнчен татах айванла пăхса ларар мар-ха. Пуçăннă ĕçе малалла тăсар. Ку Конгресс Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕ йышăннипе пулса иртет. Йĕркелӳ комитечĕн

председателĕ – Э.А. Кубарев, оргкомитет ларăвĕсене ертсе пыракансем – В.П. Мидуковпа А.П. Хусанкай. Ĕç ушкăнне (секретариата) тата Конгресс фондне Н.В. Пыркина шанса панă.

**– Конгреса хирĕçлекенсем акă мĕнрен хăраççĕ. Чăвашсем тутарсенешкел наци парламенчĕ (тутарсен – «милли меджлис») туса хумĕç-и? Аслă Совет функцийĕсене илмĕç-и?**

– Ку ыйтăва хам ăнланнă пек уçса пама тăрăшăп (ас тăвăр: йĕркелӳ комитечĕ ятĕнчен каламастăп): Чăваш Республикинче тепĕр парламент мĕн тума кирлĕ? Республикăн Аслă Совечĕ ун пек тĕллевпе нихçан та Конгресс пухас çук. Конгресс пирки калаçнă чухне хамăрăн сапаланса пĕтнĕ халăха тăван чĕлхепе, культурăпа усă курма май парасси çинчен сăмах пырать. Çак ĕçе, уйрăммăн илсен, Тутарстанри, Пушкăртстанри, Красноярскри, Камчаткăри, Пензăри, ытти вырăнти администрацисем туллин туса пыма пултараймаççĕ. Чăваш Республикин те тĕрлĕ çĕрти чăвашсене официаллă пулăшма майсем нумай мар. Этносăн ăс-хакăлпа культура ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçре мĕнле те пулин пĕрлĕх форми кирлĕ. Çавна Конгресра çирĕплетсе хăварасса шанатăп. Вăл, ман шутпа, меджлис та, Аслă Совет та пулмĕ. Пирĕн халăхăн хăйĕн çулĕ, хăйĕн шăпи, пирĕн хамăрăн тĕнче курăмпа талай. Çавна тивĕçтермелли май та пур. Вăл – халăх Канашĕ тата унăн ялан ĕçлекен органĕ (ăна чăвашла Кĕреке, Тĕпел теме юрать). Конгресс вара халăхăн канаш тытмалли Аслă Пухăвĕ. Вăл 3 е 5 çулта пĕрре пухăнма пултарать. Ку ĕнтĕ унăн статусне, пĕрлĕх уставне мĕнле йышăннинчен килет.

**– ЧНК статусĕ пирки каласа хăвармалла пуль. Тата мĕнле правасемпе тивĕçсем пулĕç унăн? Мĕншĕн тесен пухăнса калаçнипе, чуна уçнипе кăна ĕç кăлараймăпăр. Калаçнă хыççăн – ĕçлемелле.**

– Конгресс пĕтĕм халăхăн пĕрлĕхне, икĕ миллион чăваш шухăшкăмăлне пĕтĕмлетекен Аслă Пуху. Вăл çĕр чăмăрĕ çинчи пĕтĕм чăвашсен чи аслă органĕ шутланать, тĕнчери халăхсем усă куракан право нормисене шута хурса ĕçлĕ.

Аслă Пухура экономика, истори, культура, философи, вĕрентӳ, тĕн, йăла, çырулăх, чĕлхе, ӳнерлĕх тата халăх ăс-тăнне кăтартакан ытти мĕн пур ĕç-пуçа мĕн чухлĕ тарăн та анлă пĕтĕмлетсе, уçăмлă хуравсемпе парса хăварма пултарăпăр, вăл çавăн чухлĕ усăллăрах та пĕлтерĕшлĕрех пулĕ. Аслă Пуху чăваш халăхĕн тĕнче историйĕнчи вырăнне, ĕç хăватне, шухăш вăйне, мĕн пур çынсен чун хавалне палăртса тăрĕ. Кĕскен каласан – Конгресс чăваш халăхĕн пĕтĕмлетнĕ сăн-сăпатне (портретне) кăтартĕ.

Конгресс чăваш халăхĕн (этносăн) пурнăçри чи пысăк ыйтăвĕсене пăхса тухма тивĕç. Унăн йышăнăвĕсем (решенийĕсем) чăваш халăхĕ хушшинчи мĕн пур пĕрлешӳсем, обществăсем, юхăмсемпе партисем, çавăн пекех ял е район тытăмĕсем умĕнче пăрăнми (обязательно) пурнăçламалли йышăнусем шутланмалла. Ытти республикăсемпе облаçсенчи, хутлăхсенчи администраци органĕсемшĕн Чăваш конгресĕн йышăнăвĕсем сĕнӳ вырăнне пулĕç. Патшалăх органĕсене Конгресс ячĕпе йышăну тăратнă пулсан ăна вĕсем законлă йĕркепе палăртнă вăхăтра тата пăрăнми хурав пама тивĕç. Конгресс йышăнăвĕсем закон кăлармалли пуçару никĕсĕ пулма пултараççĕ. Ман шутпа – Конгресс хăй ялан ĕçлекен орган пулмасть, конгрессен хушшинче ун ячĕпе ĕçлекен суйласа лартнă орган (ăна ĕçтăвком, канаш, президиум е тата урăхла ят пама юрать) туни лайăхрах. Паллах, ялан ĕçлекен органра Чăваш Республикин тата тулай хутлăхсен шаннă çыннисем (депутачĕ е делегачĕсем) пулмалла.

**– Кунашкал пуху совет саманинче пулманнине тата иртнĕ тапхăрта чăвашсем сапаланасси, ирĕлесси уйрăмах анлăн сарăлнине шута илсен – халăхăмăрăн иртнипе хальхине истори тĕлĕшĕнчен хак памалла-тăр. Сăмахран, маргиналлăх, манкуртлăх ыйтăвĕ. Ку процесс чарăнман, геометри прогрессийĕпе сиенлĕн аталанса пырать. Уйрăмах хуласенче, Чăваш Республикин тулашĕнче. Конгресс мĕнле йĕркепе ĕçлессине палăртнă чух çакна тĕпе хумаллах пуль. Эппин, истори тишкерĕвĕпе политика-экономика прогнозĕ кирлĕ. Çак тĕллевпе историксемпе экономистсен, социологсемпе политологсен, культурологсен конгресчен ĕçлемелли пайтах. Хальччен те çырмантишкермен мар-ха. Анчах пĕтĕмлетӳллĕ ĕç кирлех-тĕр. Чăваш наци академийĕпе ăслăлăх тĕпчев институчĕн çакна тума вăй-хăват çитет. «Хыпар» хаçат çав материалсене ятарлă кăларăмсенче пичетлеме хатĕр. «Хыпар» кĕнеки кăларма та пултаратпăр.**

– Лайăх шухăш. Эппин, йĕркелӳ комитечĕн пуçаруллăрах ĕçлемелле çеç. Конгреса хатĕрлемелли плана Аслă Совет Президиумĕ çу уйăхĕнчех çирĕплетрĕ. Вăл план тăрăх тĕрлĕ ĕçсем палăртнă, вĕсене пурнăçласкансене çирĕплетнĕ. Ман шутпа, пысăк ыйту – Конгресс йĕркелесе ярасси. Вăл ялан ĕçлекен орган пулать. Унăн хăйĕн уставĕ, банкри шучĕ, штачĕ кирлĕ. Ĕçе пуçăннă ĕнтĕ.

Кун йĕркине халлĕхе çирĕплетмен. Эпĕ çакăн пек ыйтусем сĕнетĕп. Тĕп докладпа çумдоклад пулмалла. Пĕрне «Чăваш халăхĕн паянхи пурнăçĕ тата малашлăх çул-йĕрĕн тĕп паллисем», теприне «Чăваш халăхĕн еткер пуянлăхĕпе историри утăмĕсем» тесе палăртнă пулăттăм. Конгресра чăваш халăх пĕрлĕхĕн Уставне, ертсе пыракан, ялан ĕçлекен органĕсене суйласа хăвармалла. Пĕлтернисемпе йышăнусем (декларацисемпе резолюцисем) Конгресра пулаççех. Пăхса тухма çаксене палăртса хăварнă пулăттăм: «Чăваш халăхĕн ирĕклĕх йĕркине пурнăçламалли хальхи майсем çинчен» (О реализации суверенных прав чувашского народа в современных условиях), «Чăваш халăхĕ пурăнакан тавралăха упраса усă курасси çинчен» (О сохранении и использовании экологической среды обитания чувашского народа), «ООНра тăман халăхсен йышне кĕресси çинчен» (О вступлении в международную организацию непредставленных в ООН народов), «Чăваш халăх пĕрлĕхĕ тĕнчери организацисемпе хутшăнса ĕçлесси» (О связях Чувашского национального конгресса с международными организациями), «Чăваш культурипе чĕлхине аталантармалли ĕçсен йĕрки» (Концепция развития чувашской культуры и языка) т. ыт. те. Тĕрлĕ ыйтусен хушшинче çаксем пулма пултараççĕ: Раççей Федерацийĕнче чăваш наци пайне йĕркелесси, тулай чăвашсем валли хаçат кăларасси, Атăл-Урал хутлăхĕнчи халăхсен съездне пухасси, чăваш шкулĕсен йĕркине туса çитересси...

Тутар халăхĕн конгресĕнче иккĕмĕш кун 15 секци ĕçлерĕ. Вĕсен ячĕсене асăнса хăварам-ха: "Тутар халăх историйĕ», «Наци вĕрентӳ йĕркине аталантарас ыйтусем», «Тутар культурине аталантарасси», «Тутарстанри наука çул-йĕрĕ», «Тутар чĕлхин аталанăвĕ», «Кадрсем хатĕрлес ыйтусем», «Тутар бизнесменĕ», «Наци, хĕрарăм, çемье», «Çамрăксем тата культура еткерĕн ыйтăвĕсем», «Наци ал ăсталăхне чĕртсе тăратасси». Паллах, чăваш халăх конгресĕ те çак ĕçĕн лайăх енĕсемпе усă курма пултарать. Анчах, хăварах куратăр, секцисемпе ĕçлени наука конференцине аса илтерет. Пирĕн умра вара урăхларах тĕллевсем тăраççĕ. Эпĕ хам енчен оргкомитетра çапла сĕнетĕп: Конгресăн икĕ кунĕпех пĕр залра ĕçлемелле. Унччен Чăваш хĕрарăмĕсен съездне (конференцине, секцине), Чăваш çамрăкĕсен съездне, Хуçалăхпа экономика енĕпе ĕçлекенсен, Культура, çут ĕç, наука, чĕлхе ыйтăвĕпе интересленекенсен уйрăм конференцийĕсене ирттерни усăллă. Вĕсем хăйсен шухăшне Конгресра пĕлтерме, пысăк проблемăсене унта сӳтсе явма пултарччăр.

**– Маларах каларăмăр ĕнтĕ: Конгресс хăш-пĕрисене чăннипех хăратать. Чи малтанах чăваш халăхне хисеплемесĕр пурăнакан çынсене, шовинистсемпе «интернационалистсене» – çĕнĕ большевиксене. Аслă пуху тĕлнелле вĕсен ертӳçисем тем те пĕр калаçма, провокацисем тума хăтланса пăхĕç, хăнăхнă йăлапа ЧНК йĕркелӳçисем çине «националист» е «сепаратист» ярлăксем çакĕç. Лару-тăру кăткăс пулнă чух Конгресс**

**политика ыйтăвĕсене, партисемпе юхăмсен хутшăнăвĕсене айккине тĕртсе хураймĕ. Çитменнине эпир хамăрăн суверенитет декларацине ниепле те ĕçлеттерме пусăлаймастпăр-ха. Кÿршĕсем самай мала кайнине ăмсанса пăхатпăр. Суверенитет, политика лару-тăрăвĕ, наци юхăмне вăйлатасси – кусем пĕр-пĕринпе çыхăннă. Эсĕ мĕнле шутлатăн?**

– Экономика та, политика та культурăпа çут ĕçне тÿррĕн пырса тивеççĕ. Ман шутпа, Аслă Пухура Чăваш Республикин суверенлăхĕ тата тулай чăваш наци ăс-хакăлĕ пирки калаçу тĕплĕ пулмалла. Хаçатсенче «Аслă Чăвашьен» пирки çырчĕç, Чĕмпĕр хулине шĕкĕр хула туса, Тутарстанри, Пушкăртстанри, Чĕмпĕрпе Самар хутлăхĕнчи чăваш районĕсене пĕр тытăма кĕртессине 20-мĕш çулсемпе çыхăнтарса тепĕр хут хускатрĕç. 1924 çулта палăртнă чикĕсене халĕ тин Чăваш Республикине никам та парас çук. Тен, вăл кирлĕ те мар. Тулай чăваш районĕсем, ялĕсем, хуçалăхпа культура çыхăнăвĕсем йĕркелесе ярсан, кунти тăвансемпе унти хурăнташсем «пĕрлешсе тăракан савăтсен» саккунĕпе пурăнма тытăнсан çыхăну мĕн тери пысăкланать! Кунта типĕ пулсан унта çумăр çăвĕ. Кунта çĕр улми тухăçлă ÿссен, вĕсен тулли тулăх пухăнсан ылмаштарма темрен те меллĕрех пулмĕ-и? Тутарстанри Пăва, Çĕпрел, Теччĕ, Чĕмпĕр облаçĕнчи Чăнлă районĕсем тахçан Чăваш Республикипе пĕрлешес ыйтусене хускатнăччĕ. Культурăпа çут ĕç енчен малашне чăрмавсем пулмасан территорие пĕрлештерни питех кирлĕ-ши? Ман шутпа, паянлăха ку ыйту пиçсе çитмен.

Чăваш Республикин суверенлăхĕ, паллах, тулай чăвашсене хытах кăсăклантарать. Анчах эпĕ ниçта та Чăваш Республики Раççейрен уйрăлса каймалла тенине илтмен. «Хамăр килте хамăр хуça пулмалла, çын куçĕнчен выçă анчăк пек пăхса лармалла мар!» тенине кашни кунах илтетĕп. Чăнах та, пур-çук вак-тĕвекшĕн Мускава юртас пулмасть. Никам та, нихçан та никама та тĕк тăмал тăрантарса пурăнмасть. Чăваш Республикине те такам тăрантарса пурăннă пек калаçакансем е тĕрĕссине пĕлмеççĕ, е юриех суеçтереççĕ. Республика вăл çемье, хуçалăх, ял пекех. Унăн хăйĕн тытăмĕ, йĕрки, çыхăнăвĕ пур. Çавна пĕлмен пирки халăх пурнăçне япăхтарса пыратпăр. Мĕнле колхоз вăйлă? Председателĕ ăслă, ÿркенми, витĕр куçлă чухне. Хальлĕхе пирĕн пĕр шухăшлăх çукки курăнать. Ку вара питех те сăтăрлă. Паллах, Конгресс çак ыйтăва манса хăварас çук. Президент суйлавĕнче намăс курни пирĕн чуна халĕ те канăç памасть-ха. Ун пек хирĕлме пăхакансем халех тупăнчĕç пулин те.

Хамăр суйланă влаçпа хирĕçес, такама урлă, такама майлă пулас тени çав хирĕлсе пурăнма вĕренсе кайнисен сăмахĕ. Вăл чăваш халăхĕшĕн тĕпренех ют. Хамăр халăха пĕлмен çынсем çеç çапла перкелешме пултараççĕ. Вĕсене майлă вăйсем чăвашра çук. Пирĕн авалхи халăх пули-пулми шăв-шав хыççăн кĕпĕрленсе каймасть, măран та тимсĕр тесе калаймăн чăваша. Ĕçре вут пек вĕри, вăйăра шевле пек таса, çилленсен тăвăл пек кăра. Тĕплĕ, шанчăклă, лăпкă, чыслă халăх. Çакă унăн авалхи ăсне кăтартакан талай. Лайăх талай. Çав пуртан упранса юлма пултарнă та эпир çĕр чăмăрĕ çинче. Ахаллĕн пулсан  тахçанах хазарсемпе, варягсемпе пĕрле тĕнче аварĕнче çухалас пулнă.

Халăх кун-çулне тĕрĕсси тăрăх пĕлесчĕ. Куç умĕнчех хурапа шурă, усала ырă тесе калани купаланать. Кирек хăш пулăмăн та икĕ енĕ. Пĕринче А.П. Айдак карттă çине тĕллерĕ те каларĕ:

– Пăхăр-ха, çак пĕчĕк Чăваш çĕр-шывне миçе крепоç лартса хупланă. Таврипе – Етĕрне, Ваççиль, Чикме, Шупашкар, Сĕве, Улатăр, варринче – Çĕрпÿ... Пурте чиркÿпе тĕрме хулисем, чăваш çыннин сехре хăппи... Шупашкар пирки Шевченко каланине ас тăвăр-ха: кама валли çав чиркÿсемпе тĕрмесем? Хура халăх ырлăхĕшĕн-им?

Эппин, чăваш е вырăс патшалăхĕн малашлăхĕ пирки калана чухне вак халăхсене ваклакан йĕркене пăрахăçласси çинчен каласа хăвармаллах пулать. Эпир чылай ĕмĕр чуралăхра пурăннă, каллех чуралăха сĕтĕрес текенсем пур. Суверенлăх пирки вĕсем илтесшĕн те мар. Камсем вĕсем – кăйттă этемккесем-и е чее пусмăрçăсем-и?

**– Чăваш патшалăхĕн Ялав, Герб, Гимн пур. Конгресс умĕн, вăл ĕçленĕ кунсенче Ялавпа, Гербпа юнашар мĕнле лозунг çырса хурăпăр? «Сывă пултăр коммунизм» (е «интернационализм») тенĕ лозунгсем пирки мар сăмахăм. Аслă Пуху мĕнле тĕп идейăпа иртĕ?**

– Питĕ ансат, манăн шутпа, Аслă Пуху шухăшĕ: «Танлăх, Тăванлăх, Килĕшÿлĕх, Чăмăртану». Пĕр шутласан, чăвашсен Конгресс пулнă пирки ку япала национализм енне сулăнмасть-и теме пулать. Анчах сăмах шăпах интернаци хутшăнăвĕсем çинчен. Ытти халăхсемпе тан виçеллĕ хутшăнса, хамăра пайта, тĕнчене усă тума пултаракан халăх шутне кĕрес тесен пирĕн хамăр пирки хытă шутлама вăхăт çитрĕ. Мĕн параятпăр эпир ытти çĕр-шывсене? Мĕн кирлĕ пире ыттисемпе тан пурăнас тесен? Хăш енĕпе çанă таварса ĕçлемелле? Сивĕре ĕнтĕркенĕ хур пек сăмсана çунат айне чиксе лармалла-и е лава кÿлĕннĕ лаша пек тапса туртмалла? Лавĕ çннче мĕн, ăна ăçта, мĕн тума туртатпăр? Пĕрисем Япони çулĕпе каймалла, теприсем Тутарстанран вĕренмелле теççĕ. Çапла шутлани те усăллă. Конгреса хатĕрленнĕ чухне кашни чăваш хăйсене тивекен, интереслентерекен ыйту пирки тепре лайăххăн шухăшласа пăхтăр. Кунта экономист валли те, политологпа культуролог валли те, рабочипе бизнесмен валли те пуç ватмалли тем чухлех.

Кашни чăваш конгреса хатĕрленме тивĕç. Вăл çакна тумасть пулсан чăваш тăванлăхĕн ятне çĕртет кăна.

Тăванлăхпа пĕрлĕх туйăмне çухатнă кил-йыш арканать. Халăх та çавах. Чăваш халăхĕн тăванлăх туйăмĕ сиенленмен-ха. Çавă тытса тăрать те пирĕн ĕнланулăха, ĕмĕте, малашлăха.

Халăх пĕрлĕхне пуçтарса, шухăш-ĕмĕтне палăртса, инкек-синкеклĕ вăхăтра чăмăртанса пурăннине нимĕн те çитес çук. Çав сиплĕ пĕрлĕх туйăмне вăйлатас, пĕтме парас мар тесе пухăнать ĕнтĕ халăх конгресĕ.

Мĕн çинчен шутлатпăр куллен кун? Ача-пăчана ырă-сывă ÿстересчĕ, кил-çурта, сул-йĕре тирпейлĕ упрасчĕ, тыр-пул тулăх туса илесчĕ, çĕрпе шыва таса тытасчĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесчĕ тетпĕр. Ку кăна-им? Пуç çинче ытти ĕмĕт-шухăш та тăрать. Ытти халăхсем умĕнче тирпейлĕ, таса, хитре пулас килет вĕт-ха чăвашăн та. Элле, хамăр лăнчăр-ланчăр пулсан, тĕнче пĕрех савать текен пур-и? Хитре хитре патне, ăслă ăслă çумне туртăнать. Çакна чăваш çирĕп пĕлет, çавăнпа халĕ те хытă тытса пырать çак йĕркене. Вăрçă-харçăра хитре те ăслă пулма çук. Тарлă ĕçре, таса уявра пурнăç тăсăмне, хакне, илемне ăнкарса илме пулать. Пăхăр-ха пирĕн мĕн пур йăла-йĕркене, пĕтĕм пурнăç тытăмне. Йăлтах кăкăр çинчи шутлă шăрçа пек – йĕркипе, виçеллĕ, килĕшÿллĕ. Çут çанталăк сăвапĕ пек! Çав килĕшÿлĕх шухăшĕ Конгресра тĕп вырăнта пуласса шанатăп.

**– Кашни кил, кашни чăваш Аслă пухăва хатĕрленмелле терĕн. Мĕн тумалла-ха, сăмахран, шкул ачисен? Хресченсен? Туй тума пуçтарăннă хĕрпе каччăн?**

– Сăмахран, шкул хĕрачи хăйсене валли чăваш тĕрриллĕ кĕпе çĕлесшĕн. Çавна шкула кайиччен тĕрлесе пĕтертĕр. Парне пулмарĕ-и çакă? Питĕ пысăк парне. Хресчен, кил умне тухсан, тек-текех пăхать унта-кунта тирпейсĕр выртакан ăпăр-тапăр çине. Пухса хума алă çитмест, мур илесшĕ, текелет. Вăт тыттăр та пĕлтертĕр пĕтĕм урам халăхне: çак эрнере, конгреса хатĕрленсе, хамăр яла тирпейлетпĕр. Пурте тухтăр, пурте ĕçлетĕр. Юлашкинчен, ваттисене асăннă кун, тăхăр вуннăри Евруç кинемие ниме туса пулăшатпăр. Итлемĕç тетĕн-и? Итлеççĕ. Ку вăл ĕмĕртен çапла пулнă, малашне те çак йăла пирĕн пурнăçран тухса ÿкмелле мар. Конгресс валли парне-и? Паллах. Туй каччипе хĕрĕ тата? Ирттерччĕр туйне асаттесен ырă йăлипе – тирпейлĕ, хитре, пĕтĕм

тăван-хурăнташ, кӳршĕ-аршă, тĕрлĕ халăх çынни юрласа-ташласа савăнмалла. Мишерпе ирçе хĕпĕртесе калаччăр: чăваш тус ĕçре те хастар, туйра та тирпейлĕ. Парне-и çакă? Питĕ шеп парне!

Конгресс ячĕпе пайтах ырă ĕç пуçарма май пуррине вак тĕслĕхре кăтартас терĕм. Тулай чăвашсен вырсарни шкулĕсем, чăваш класĕсем уçмалла, фольклор е драма ушкăнĕсем йĕркелемелле. Хутлăхри ялсен историне халăха ăнлантарасси тата? Хамăрăн ырă йăла-йĕркене чĕртесси тата? Чăваш тĕнĕпе пурăнакан ялсен мĕншĕн тăван тĕн çинчен уççăн калас çук? Православи пирки чан çапса калатпăр, аллаха асăнса мечĕт çинчен кăшкăратпăр, чăваш сартăшĕ пирки мĕн-ма тулли каласа пама юрамасть? Е пирĕн мăчавăрсемпе элменсем пуппа мулларан кая çынсем-и?

Эпир тĕнчери ытти халăхсенчен нихăш енчен те катăк мар. Çавна ăнланса илме танлăха пур енчен те кăтартмалла. Вара пире ытти халăх тан курса хисеплĕ. Сăрпа Сĕве хушшинче пирĕн патшалăх, кунта эпир кил хуçисем. Аякран килнĕ вăхăтлăх тарçă йĕрке туса, пурлăх кӳрсе хăварас çук. Çав вăхăтрах пăхăр-ха: такам пырса ĕçлесе парасса кĕтекен те пайтах. Мĕн чухлĕ калаçрăмăр урамсен, çул чарăнăвĕсен ячĕсене чăвашла çырса хурасси пирки. Канашра автостанцире чăвашла калаççĕ, Йĕпреç çулĕ çинче чарăнусене чăвашла-вырăсла çырнă. Мускава каякан аслă çул çинче мĕн куратпăр? Хăнк та туман кунти хăна-хуçасем... Шупашкарти автостанцире, автобусра чăвашла калаçма çаплах «именеççĕ-ха». Мĕн ку? Тӳрккеслĕх-и е айванлăх-и? Тен, шовинизм палли?

Ман шутпа, халăх конгресĕн тулай чăвашсем йышлă пурăнакан республикăсен, облаçсемпе крайсен администрацийĕсем умне çивĕч ыйтусем лартма пултармалла. Танлăхпа тĕрĕслĕх шăппăн ларнинче мар. Тивĕçлине виçеллĕ пурнăçлама хистенинче те танлăх пур. Кунта тулай чавашсем пирки ятарласах каласа хăварас тетĕп. Вĕсем Шупашкара килеççĕ те эсир пире кĕнеке, хаçат, учитель ярса памастăр тесе ӳпкелеççĕ. Тĕрĕссипе, Çĕрпӳре, Хусанта, Самарта, Мускавра, Кемĕрте тата ытти хуласенче ĕлĕкрех вĕсене хăйсемех хатĕрлеме пултарнăçке! Халĕ мĕншĕн хăйсене  кирлине халăх хăй тăваймасть? 115–130 пин чăваш пурăнакан Тутарстан, Пушкăртстан, Самар, Чĕмпĕр облаçĕсем тăван чĕлхепе хаçат, радио е телепередача, кĕнеке, учитель кăлараймаççĕ пулсан, çавсем пĕри те вĕсене кирлĕ мар тесе калама тивет-ши? Куланай тӳленĕ чухне çеç тан пулни çителĕксĕр. Кулач çинĕ чухне те тан пулма вĕренес пулать. Тан пулассн халăх шухăшне пĕрлештерме пултаракан вăйсем пурринчен килет. Тутарсен «Тăван чĕлхе» ятлă ушкăнĕсем мĕн пур кĕтесре ĕçлеççĕ. Чăвашсем вара обществăсемпе центрсем чылай районта халĕ те йĕркелеменха. Конгресс ячĕпе ун пек пĕрлĕх ушкăнĕсене кашни ялта, районта, хулара тăвас пулать. Ку ĕçе чăваш депутачĕсен хытă явăçмалла. Анчах депутачĕсем чăвашран сахал иккен. Самар хутлăхĕнче, сăмахран, халăх йышне пăхсан, облаç советĕнче 10 депутат чăваш пулмалла. Халĕ миçе? Виççĕн тесе шутлаççĕ, анчах пĕлмеççĕ. Ытти çĕрте те çавăн пекех. Куншăн урăх халăх çыннисем айăплă-и? Çук. Чăваш халăх конгресĕ çак ыйтусене хускатма лайăх сăлтав парать. Аякра пурăнакан чăвашсем Шупашкара культурăпа экономика килĕшĕвĕсен (договорĕсен) проекчĕсемпе килсен питĕ аван пулĕччĕ. Договора пурнăçлама май паракан программăсем те кирлĕ. Вĕсене тăвас тесен лару-тăрăва вичкĕн пĕлмелле. Пĕлетĕр-и-ха хăвăра, тулай чăвашсем?

**– Делегатсемпе хăнасем ямалли йĕркене çирĕплетнĕ-и? Камсем килме пултараççĕ конгреса?**

– Хăнасене оргкомитет чĕнет, делегатсене вырăнти халăх (обществăсем, пĕрлĕхсем, ял-хула администрацийĕ) пуху туса суйласа ярать. Малтанласа пин çын пуçне пĕр делегат суйламалла тесе каланăччĕ. Анчах ку тĕрĕслев (контроль) палли çеç. Чăвашсем пурăнакан хуласенчен 20–25 делегат вырăнне 5–6 делегат килсен те çитет, ун вырăнне аякри вырăнсенчен, 100–200 çынлă ушкăнран та делегат килсен питĕ аван пулатчĕ. Территорие хытах пăхма тивет делегат суйланă чухне. Кунта малтанах палăртнă хисеп (квота) пулма пултарать.

Ман шутпа, Чăваш Республикинче пурăнакан тăвансем хăйсен хурăнташĕсене Конгресс кунĕсенче хăнана чĕнни питĕ килĕшӳллĕ пулмалла. Мĕншĕн пурин те гостиницăсенче, общежитисенче пурăнмалла? Ан тив, килччĕр вĕсем тăвансем патне хăнана, çав вăхăтрах Конгресс ĕçĕ-хĕлĕпе май пур тарăн паллашĕç, культура программине хутшăнĕç.

Конгресс вăл Пуху çеç мар, вăл – хутшăну, паллашу, кĕреке, ниме, асăну. Тăванпа тăван тĕл пулса калаçни хăй – пин ылтăн.

Асаттесемпе маçаксен çĕрĕ хăйĕн тăван ывăл-хĕрне кирек хăçан та хапăл туса кĕтсе илĕ.

*«Хыпар», 1992, утă, 18.*

## ЧОКЦ правленийĕ: МĔНШĔН ПИТ ВАСКАМАЛЛА-ХА?

*Чăваш Республикин Аслă Канашĕн Президиумĕ 1992 çулхи юпа уйăхĕн 8–9-мĕшĕсенче Шупашкарта Чăваш наци конгресне ирттерме йышăннă хыççăн оргкомитет çак пысăк ĕçе хатĕрленме тытăнасси çинчен пичетре чылай çырчĕç ĕнтĕ. Республикăна ертсе пыракан учрежденисемпе обществăлла организацисенче, массăллă юхăмсенче анлă мероприятисем палăртаççĕ. Çавна май Чăвашсен обществăпа культура центрĕн правленийĕ те (Шупашкар, Мускав проспекчĕ, 33«а» çурт) çак ыйтăва хăйĕн черетлĕ ларăвĕнче сӳтсе явrĕ.*

Аслă Канаш ку тĕлĕшпе васкани сисĕнет. Хĕтĕртекен ушкăнсем хыççăн кайса тĕплĕн шухăшламасăр палăртнă мероприяти пулассăн туйăнать вăл. Мĕншĕн тесессĕн хальлĕхе Чăваш Республикин правительстви те, ЧОКЦ та Пĕтĕм чăвашсен 1989 çулхи съезчĕ йышăннă программăна пĕтĕмпех пурнăçласа çитереймен. Ăна валли вара сахал мар вăхăт тата нумай укçа-тенкĕ кирлĕ. Çĕнĕ Конгресс ирттерме уйăракан миллионсене хальхи вăхăтра чăваш наци культурине çĕклеме ярсассăн мĕн тери кирлĕ усă панă пулăттăмăр эпир тăван халăха. Çавăнпа ЧОКЦ активисчĕсем ку конгреса кăçал ирттерме иртерех тесе шутлаççĕ, çитес çулччен нумай ĕç тума пулать, ун хыççăн вара Чăвашсен пĕтĕм тĕнчери съездне ирттермелле.

Чăвашсен 1989 çултанпа ĕçлекен обществăпа культура центрне ертсе пыракан **М.Н. Юхма** хăйĕн сăмахĕнче çак шухăша палăртнă хыççăн правленин ытти членĕсем те кунпа килĕшни çинчен пĕлтерчĕç.

– Тĕван республика чăннипех пысăк йывăрлăхра, – терĕ «Пике» журналăн тĕп редакторĕ **Р.В. Сарпи**. – Экономика чакса пырать, культура арканать. Халăх пурнăçĕ начарланать. Мĕн чухлĕ вăй хумалла вĕсене çĕклессишĕн. Унсăр пуçне тата пирĕн кăçал Чăваш Республикин Президентне те суйламалла. Сахал мар укçа-тенкĕ тăккаланĕ унта та. Çак йывăрлăха шута хумасăр вăхăтсăр тепĕр мероприяти палăртаççĕ – укçа-тенке пустуй çилпе вĕçтерсе ямалли ĕç. Халăх укçине халăха усă кӳмелли ĕçшĕн тăккалас чухне таçта васкаççĕ. Идеологи ĕçĕнчи хирĕç-тăрăва çивĕчлетмелли, уйрăм çынсен интересĕсене халăх интересĕсенчен маларах хурса ертсе пымалли вырăнсене çавăрса илессишĕн Аслă пуху ячĕпе витĕнни çеç пуль ку.

Вăрçăпа ĕç ветеранĕ **С.П. Юшков** писатель Конгресс ирттерессипе куршĕри халăхсем хыççăн ытлах пĕчĕк ачалла сикме сĕнмерĕ. Сăмахран, тутарсем хăйсен конгресне питĕ тĕплĕн хатĕрленсе тутар халăхĕшĕн усăллă ирттернĕ. Эпир хамăрăн Аслă пухăва мĕн пур çитменлĕхпе васкаса пыратпăр. Мероприяти хыççăн хăваламалла мар, ĕçне тумалла чи малтан. Халăха пулăшмалла. Экономикăри тата социаллă пурнăçри тĕп ыйтусене кирлĕ пек татса парайман хушăра чăваш нацине малалла аталантарас, унăн культурине çĕклес тесе мĕн пустуй павраммалла? Халăхăн политикăпа идея тĕлĕшĕнчи пĕрлĕхне çирĕплетесси пирки те анлăрах шухăшламалла. Çапăçакансемпе хирĕç тăракансен пĕр-пĕрне туслăн алă тăсса памал-

ла. Çавсене пурнăçламашкăн вара вăхăт кирлĕ. Васкама кирлех-ши конгреспа?

Правлени членне, «Вучах» хаçат редакцийĕн ответлă секретарьне **В.М. Михайлова** тата акă мĕн питĕ хумхантарать. Чăваш халăх конгресне хатĕрленсе ирттерме йĕркеленĕ хĕрĕх ултă çынран тăракан организаци комитетне М.Н. Юхма ертсе пыракан ЧОКЦран та, Раççейри чăваш хĕрарăмĕсен Р.В. Сарпи ертсе пыракан канашĕнчен те пĕр представитель кĕртмен. Чăваш халăхĕшĕн, унăн малашлăхĕшĕн чăннипех ĕçлекен обществăлла организацисене ним вырăнне хуманни, вĕсене пĕтĕм чăваш халăх юхăмĕнчен аякка сирсе хăварма ятарласа хăтланни пулать вĕт ку республика Аслă Канашĕ енчен! Темĕнле пуçпа шухăшламасăр тунă чыссăрла, ырă мар ĕç ку! Ăна эпир сивлетпĕр.

Чăваш халăх художникĕ **В.И. Агеев** шухăшĕпе – Конгресс пухас пирки чи малтан халăхпа анлăн канашламалла, ун хыççăн тин вăхăтне палăртмалла пулнă.

Ыйтăва тĕплĕн сÿтсе явнă хыççăн ЧОКЦ правленийĕ Чăваш Республикин Аслă Канашĕ Чăваш наци конгресне ирттерме иртерех йышăннă тесе палăртрĕ. 1989 çулхи съезд палăртнисене пурнăçламасăр Чăвашсен III съездне (конгресне) пухни вырăнсăр. Ку вăл Чăвашсен II съезчĕн сценарине тепĕр хут лартни çеç пулĕ. ЧОКЦ правленийĕ çак тапхăрта Чăвашсен пĕтĕм тĕнчери I съездне хатĕрленсе ирттересинне кирлĕ те вырăнлă тесе шутлать. <…>.

В. КУЗНЕЦОВ.
*«Вучах», 1992, 24№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔ: «А» ХЫÇÇĂН «Ă» ТЕМЕЛЛЕ ТЕ...
### ЧНК йĕркелÿ комитечĕ хăй ĕçне темшĕн сÿрĕккĕн пурнăçлать

*Чăваш алфавитĕнче «А» хыççăн «Ă» тăрать – «вырăсланса» пынă май «А» хыççăн тÿрех «Б» теме хăнăхнă та пиртен чылайăшĕ, халь вара «ă» е пачах сиксе юлать, е чăвашла алфавит калама пуçланă чухнех чĕлхе такăнать... Шăпах çакна аса илтерет Чăваш наци конгресне йĕркелекен ушкăн ĕçĕ-хĕлĕ. Çурлан 11-мĕшĕсенче пулса иртнĕ лару та çак шухăшах çирĕплетрĕ.*

«А» тесе каланă ĕнтĕ. Кăçалхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕсенче Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕ Чăваш наци конгресне юпа уйăхĕн 8–9-мĕшĕсенче ирттерме йышăннă, ăна хатĕрлекен йĕркелÿ комитетне çирĕплетнĕ, унăн пĕр-икĕ ларăвĕ иртнĕ. Каярах ЧНК Фондне туса хучĕç, унăн директорне çирĕплетрĕç. Çурла уйăхĕн 11-мĕшĕсенче йĕркелÿ комитечĕн ларăвĕнче вырăнсенчен суйласа ямалли делегатсен йышне палăртрĕç, фонд директорĕ Н. Пыркин тунă доклада сÿтсе яврĕç. Тĕрĕссипе – ЧНК йĕркеленĕ май камăн мĕн тумаллине те планпа çирĕплетнĕ ĕнтĕ, Конгресăн ĕçлĕ хучĕсене хатĕрлекенсем те паллă... Çапах та темшĕн çырлаху çук. ЧНК йĕркелÿ комитечĕ хăй ĕçне темшĕн сÿрĕккĕн пурнăçлани палăрать, çакă вара мал шухăшлă чăвашсем пулас конгреспа çыхăнтаракан шанчăка хуçмаллипех хуçать.

Шанма, ĕмĕтленме пăрахман-ха чăваш. ЧНК йĕркелÿ комитетне килекен çырусем те çавнах çирĕплетеççĕ. Акă Пушкăртстанран Аркадий Русаков хăйĕн сĕнĕвĕсене ярса панă, «конгреса йĕркеллĕ кăна ирттересчĕ ĕнтĕ, унăн усси пысăкрах пулсан аванччĕ» тесе пăшăрханать, Тутарсен тĕнчери конгресĕ питĕ чаплă иртнине палăртать. Чĕмпĕр тăрăхĕнчен Н. Казаков та хăйĕн сĕнĕвĕсене янă, конгреса йыхравлама Америкăра пурăнакан Ирина Морозова-Барнес тата Лоис Хой адресĕсене пĕлтернĕ (вĕсем тĕрĕсем пухаççĕ, чăваш тĕррисене те тĕпчеççĕ). Шупашкарта Киров урамĕнче пурăнакан Элмен Чаптейне юлашки вăхăтра пире ку таранччен тĕслĕх парса тăнă çул пуççен, геройсен сăнарĕсем тĕксĕмленни пăшăрхантарать. Чăваш халăх конгресĕ çак ыйтăва мĕнле те пулин çутатасса кĕтет. Шупашкар районĕнче пурăнакан Лев Александрович Улеев, пилĕк ача ашшĕ, Конгресс нумай ачаллă çемьесен нушисене татса парасса та ĕмĕтленет – «чăваш ачи-пăчин малашлăх çук пулсан чăваш халăхĕ пурна-киле пĕтме те пултарĕ» тет. Паллах, çак пур ыйту та Конгресра тапса тухатех ĕнтĕ, анчах вĕсене тĕплĕ, малашлăхлă татса парасси йĕркелÿ комитечĕ еплерех хатĕрленнинчен нумай килет.

Наци конгресне тĕплĕн хатĕрленсе ирттерменнишĕн савăнакансем вара тупăнма пултараççех. Чи малтанах вĕсен йышне кавычкăра каламалли интернационалистсем, хăй вăхăтĕнче «Чăваш Республикине нимĕнле президент та кирлĕ мар» тесе кăшкăракансем, чăваш халăхĕ ăс-хакăл, наука, экономика тата политика тĕлĕшĕнчен ытти халăхсемпе тан аталанма пултарнишĕн уççăн мар тăк – ăшра та пулин вăрттăн кĕвĕçекенсем кĕреççĕ – пирĕн таврара ун пеккисем çук тесе çирĕплетме питĕ йывăр. Тепĕр йышшисене те чăваш халăхĕн интересĕсене саккунлă йĕркепе хÿтĕлекен пĕртен пĕр Наци конгресĕ пулса тăни чăрмантарать ахăр – вĕсем те çак Аслă пухăва хирĕç, вăл путланса ларасса кĕтеççĕ. Кĕтеççĕ çеç мар, кĕрешеççĕ те. Çак юхăмра палăрнисен шутне чи малтанах Юхма «ЧОКЦĕпе» çыхăннă çынсене кĕртмелле.

Акă мĕн çыраççĕ вĕсем «Чăвашсен обществăпа культура центрĕ» ятпа пĕчĕк çеç ушкăн кăларса тăракан «Вучах» хаçатăн утă уйăхĕн 27-мĕшĕнчи номерĕнче: «Васкама кирлех-ши конгреспа?» Çак иккĕленĕвĕн тĕшшине те пытараймаççĕ хăйсем – Наци конгресне йĕркелесе ирттерекен комитета М. Юхмапа Р. Сарпие кĕртмен. Енчен те унта вĕсем хуçаланнă пулсан паян кун «Вучах» та Наци конгресĕ кирлĕ тесе пыр çурăличчен çухăрашассине пĕлетĕн те – вара «Вучах» тĕрлĕ сăлтавсем [Конгресс валли укçа-тенкĕ «пустуй» тăккалани. Наци конгресĕ вырăнне Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен съездне (Наци конгресĕпе уйрăмлăхĕ мĕнре-ши çав «пĕтĕм тĕнчери чăвашсен съезчĕн») ирттерме сĕнни тата ытти те] тупса халăха пăтратнине мĕнле хак памалли яр-уççăн палăрать. Халăх ĕçне тăвас тесе Юхма халăх укçине мĕнле сапаланине хăйсăр пуçне Турă çеç пĕлет, вăл халĕччен тăтăш ирттернĕ «Чăваш (ăнлан: Юхма) съезчĕсем», «хĕрарăмсен курултайĕсем» валли мул хăçан тăкаклама юранине те ытла лайăх пĕлнĕ-çке вĕсем, «КЛИПра» çырнă тăрăх – кăçал тата хăй виçĕ «съезд» ирттерет-мĕн, çитменнине – Юхма «тăрăшнипе» пухнă хăть мĕнле «съезд-курултайăн» чи тĕп «докуменчĕ» Юхма Мишшине «халăх писателĕ» ят пама тапаçланни пулнă.

Шăпах çавăн пек усал тата «ырă» сунакансем пулнипех ĕнтĕ Чăваш наци конгресне чăваш халăхĕн чи сумлă органĕ вырăнне хурса хатĕрленмелле. Йĕркелÿ ушкăнĕнче А. Хусанкай, В. Никитин-Станьял тата наци чĕрĕлĕвĕн ĕçĕнче палăрнă ытти сумлă юлташсем пулнипе, паллах ĕнтĕ, ĕç-пуç начарри тÿрех вĕсене пырса тивет. Ăнланмалла: начарришĕн мĕлке вĕсем çине ÿкетех, анчах та вĕсем те йĕркелÿ ушкăнĕн ертÿçи – Кубарев – çине ытларах шанаççĕ ахăр. Пĕрех йĕркелÿ ĕçне хăй ертсе пыма шантарнă çыннăн та, çак ĕçшĕн чунпа яваплă çынсен те ĕçе тĕпренех лайăхлатма май та, вăй-хăват та тупмаллах. Çакăн пирки йĕркелÿ комитечĕн ларăвĕнче Э. Аблякимов, В. Станьял, Н. Егоров тата ыттисем ĕнентерÿллĕ калаçрĕç.

Йĕркелÿ комитечĕн ларăвĕнче Конгреса тĕплĕн хатĕрленсе çитме ăна юпан 8–9-мĕшĕсенче мар, каярах ирттерме сĕнекенсем те пулчĕç. Пĕр енчен илсен – çине тăмасан тепĕр çулталăкран та хатĕрленсе çитеймĕн, тепĕр енчен – ĕççи, авăн уйăхĕнче Раççей Аслă Совечĕпе правительстви пирĕн республикăра пысăк канашлу ирттерме хатĕрленни, унта Ельцина тата Хасбулатова кĕтсе илесси, паллах, Конгреса тĕплĕн хатĕрленме чăрмантарать. Анчах та Конгреса чÿкраштав уйăхĕсенчен те кая хăварни нимĕнле усă та парас çук.

Çапах та Конгресс ăнăçлăхĕ йĕркелÿ комитетĕнчен çеç мар – республикăра, Раççейре пурăнакан кашни чăвашран килет. Çакна çеç манас марччĕ. Çав кунсенче Чăваш Республикин кашни ял,

кашни колхоз, республика тулашĕнчен делегацисене хăнана чĕнни, республикăри ялсенчен ытти облаç-республикăсене кайни, хамăр йăла-йĕркене, культурăна, экономикăна тĕреклетни, политика ыйтăвĕсене сӳтсе явни Наци конгресĕн пĕлтерĕшне ӳстерме пулăшĕ. Çакăншăн пурин те тăрăшмалла.

Илле ИВАНОВ.
*«Хыпар», 1992, çурла, 17, 162 №.*

## ПУРНĂÇ ВЕКТОРĔ

Куç умĕнче тенĕ пек пирĕн кун-çул. Чĕрере пĕр ыйту – ăçталла каймалла? Çав шухăшпа пуçтарăнасшăн та ĕнтĕ чăваш халăхĕ хăйĕн пĕрремĕш Конгресне.

Çак çĕр çинчен çурхи юр пек ирĕлсе пĕтес мар тесен мĕн тумалла-ши пирĕн? Тен, çав пурнăç тĕнĕлне, хуçăлса аннăскерне, юсаса хута ямалла пуль чăваш хăйĕн кун-çулĕпе кăлтăртаттарса юрласа кайтăр тесен. Çĕр-шыв кăвапине те шыраса тупмалла пулать. Татăлса кайман-и вăл пирĕн? Тен, çавăнпа аталанаймастпăр, тен, çавăнпа вăхăтсăр çуралнă ача пек ӳт илейместпĕр. Шухăшламалли нумай. Кашнин каласчĕ, пĕрле пухăнасчĕ, пĕр кăмăлпа кар тăрасчĕ... Вара тин пирĕн ачасен шăпи те телейлĕрех пулĕ. Халĕ, калама та хăрушă, ачасем пирĕн ĕçсĕр тăрса юлчĕç. Кам тата мĕн пулать вĕсенчен? Вĕсене вĕрентме, ĕç вырăнĕ тупса пама укçа çук теççĕ. Укçи мар пулĕ-ха вăл? Урăх çĕре каять, çав анчах,– хамăрăн патшалăх тытăмĕ вăйсăр пирки, халăх интересĕсене шута илменрен. Вара çав укçашăн урăх облаçсене кайса ĕçлеме тивет. Ку – паллă.

Çак пурнăçра пĕр пĕтĕмлетсе тăракан пĕр ăнлав пур. Эпĕ ăна пурнăç векторĕ тетĕп. Çав вектор халĕ чăваш еннелле мар, пачах урăх халăхсен еннелле пăхать. Укçи те, тумтирĕ те, апачĕ те пирĕн валлиех мар-ха. Мĕн юлашки юлнă – çав анчах тивет пире. Çав вектора хамăр енне çавăрса яма пирĕн темле механизм туса хумалла, çак тĕнче ырлăхĕ чăвашăн та пултăр тесе Конгресра пĕрле ларса шухăшламалла. Мĕнле механизм вăл? Тата литература ĕçĕ-и вăл? Мĕншĕн экономистсем ку таранччен те ăна туса курса ĕçлеттерсе яман-ха?

Мĕншĕн тесен çав вектора тата ун механизмне чăваш чунĕпе мар, темле интернационалист куçĕпе пăхса тунă. Тĕрĕссипе, чунсăр механизм ăсталанă. Çавăнпа та вăл çын валли мар, производство валли кăна ĕçленĕ. Чăваш вăл мĕн – ĕçе пынă, ĕçленĕ, япалине вара курман та, ун аллине вăл лекмен. Тупăшĕ пирки каламастăп та, вăл пачах урăх каналпа тухса кайнă. Пурлăх векторĕ те, апла, пирĕн еннелле мар тайăлнă. Ку вăл хăй пĕр пĕтĕмĕшле проблема, ăна пĕтĕм тĕнче контекстĕнче пăхса ăнланса илмелле.

Механизм пирки. Мĕнле пулмалла-ши вăл тесе шухăшласа кайсан çак шухăш патне пĕр чăрмавсăр çитетĕн пек. Те тĕрĕс ĕнтĕ вăл? Хăвăр хушса е кăтартса шутласа пăхăр. Акă мĕн! Пур япалана айккинчен-майккинчен ĕç укçи шучĕпе, пурăнмалăх та пулин тесе, илсе тăраймăн. Мĕн кирлĕ – пурне те хамăрăн тумалла. Апла пĕтĕм промышленноçа урăхла, халăх валли тавар кăлармалли çĕре çавăрттарса ямалла. Халь эпир (экономика пирĕн, пурнăçĕ те ĕнтĕ, ал ĕç вăйĕпе тытăнса тăрать) ĕç укçи илнипе çеç тăранса пурăнатпăр. Паллă, кун пек чух пуйма çук. Çавăнпа пурлă-çуклă пурăнатпăр та, ĕçленĕшĕн кăна пĕр-ик тенкĕ тыттарса яраççĕ те пире... Çырлахса ларатпăр вара çăкăр çимелĕх пур-ха тесе. Çитет пуль шывпа çăкăр çинче ларса! Пурлăха хамăрăн алла илес пулать. Вăл – пирĕн, урăх никамăн та мар. Вырăссем, тутарсем тата ытти вун-вун халăх хăйĕн пурлăхĕпе хăй пĕлнĕ пек усă курать, чăваш анчах-мĕн айван, унăн ăс та, вăй та çитмест – мĕн кирлине ĕçлесе пыма. Хамăр тĕллĕн пурăнаймастпăр теççĕ чеерехсем. Мĕншĕн апла калаççĕ – паллă мар. Ман шутпа çавсем – республика суверенитетĕнчен хăракансем; вĕсем янтă пурăнма хăнăхнă, çын ĕнси çинче ларасшăн. Хăй тĕллĕн пурăнаймас тăк – апла вăл такам ĕнси çинче ларать, çын çăварне кĕмелли татăка туртса илет – вырăсран-и унта, чăвашран-и – пĕрех. Вăл харам пыр. Халь эпир çав харам пырсене итлесе хамăрăн никама пăхăнман патшалăха та туса хураймарăмăр, ăна йĕркелесе тăракан çынна та – Президента – суйлаймарăмăр. Вăт, пурнăç! Пур енчен те улталаса тăрать.

Çак ултава хирĕç тăраймăпăр-и? Хамăра мĕн усă кӳрет çавна ăнланса илеймĕпĕр-и? Ман шутпа, ăнланса илме кăна мар, пурнăçа кĕртме те май пур. Чăн малтан, паллах, Конгреса пухăнса патшалăх çыннисене чăвашшăн ĕçлеме хушса хăварас пулать. Патшалăх тытăмне вăйлатнă хыççăнах ун вăйĕпе пурнăç векторне халăх енне çавăрма механизм палăртса хурас – конкретлă пултăр вăл. Калăпăр, савăт-сапа фабрики уçас унта, пĕчĕк тракторсем кăларма тытăнас. Халăх нушине шута илес те, депутатсене наказ панă пекех, мĕн тумаллине пĕтĕм халăх ячĕпе хушса хăварас. Унсăрăн Конгресс пуш сăмах çапни кăна пулĕ. Çавăнпа та эпĕ çак статьярах оргкомитета чăваш халăх аталанăвĕн концепцине туса хума кама та пулин хуштарасшăн. Çавна сӳтсе явмалла пултăр Конгресра.

Унсăр пуçне пирĕн хамăрăн геополитикăна та çĕнĕрен пăхса тухма тивет. Енчен те ку таранччен эпир Анăçалла пăхнă пулсан, – пĕтĕм пурлăх, культура, укçа Мускав урлă килсе тăнă, – халĕ вара, ман шутпа, тĕнче çине анлăрах пăхма та вăхăт çитрĕ, – Хĕвел тухăçĕнчен хĕвел тухтăр тетĕп. Пĕр тăхтаса тăмасăр ытти тĕрĕк халăхĕсемпе суту-илӳ, калаçу, çул çӳрев пуçласа ярас пулать. Пирĕн пурнăç ĕмĕрсем тăршшипе пĕр çулпа пынă пулсан, халĕ ма татмалла тет вара çав çула? Эпир темле уйрăм халăх мар. Эпир тĕрĕксем! Анăçпа Тухăç хушшинче тăратпăр пулсан та. Ку вăл питĕ лайăх. Ахальтен мар чăваш хăйĕн çĕр-шывне çĕр кăвапинче курнă. Çĕр кăвапи эпир, акă мĕн. Çавăнпа та пĕр иккĕленмесĕр мĕн пур йĕри-таврари çĕр-шывсемпе пĕрле туслă пурăнма пуçламалла, тен, тĕрĕксен хăйсене майлă ассоциацине туса хумалла – славянсенни пек, угро-финсенни пек.

Апла пире тулаш суту-илӳ кăна мар, тулаш политика министерствисем те кирлĕ пулаççĕ – кăна та ăсласа илсе тума хушса хăварас пулать. Эпир, географи енчен пăхсан, питĕ меллĕ вырăнта – Атăл хĕрринче – ларатпăр. Ахальтен мар пуль çав авал çак çĕрте Пăлхар патшалăхĕ йĕркеленнĕ; сăлтавĕ пулнă: экономика, политика, культура енчен. Çав сăлтавсем вĕсем ниçта та çухалман, халĕ те пур. Объективлă хутлăх пур тейĕпĕр. Çав вăхăтрах уйрăмлăхне те, хамăрăнне, упраса хăвармалла. Унсăрăн та пурнăç çук – чăваш пулса юлас тесен. Эпир мĕншĕн сыхланса юлнă тетĕр? Эпир вĕт, юлнисем ĕнтĕ, ислам тĕнне те, вырăс тĕнне те йышăнман, çавăнпа чăваш тĕслĕ. Кам урăх тĕне илнĕ – вăл пĕтнĕ. Урăх халăх çыннине тухнă. Е, халь калана пек, «вырăс чĕлхеллĕ» пулса тăнă. Ун пеккисем те нумай. Вĕсене те питĕ йывăр, мĕншĕн тесен хăйсен чĕлхине, культурине пăрахни те тин кăна вĕсен, çавăнпа та ни вырăс, ни чăваш, ни тутар мар... Хăйсен культури çук. Çавă кансĕрлет. Кун пирки те шухăшлас пулать – вĕсем те çынсемех, нумай япалана, чăн малтан чунĕпе çĕр-шывне, пăрахнă пулсан та...

Çак тĕнчере çын сăнлă, турă чунлă, ылтăн алăллă юлас тесен чăн малтан пирĕн чăн тĕрексем тупмалла, вĕсене палăртса хăвармалла та пурнăçра çирĕплетсе тăмалла. Мĕнле тĕрексем-ха вĕсем? Пĕтĕмлетсе тенĕ пек калатăп.

Пĕрремĕшĕ – пурнăç векторне чăваш енне çавăракан механизма патшалăх тытăмĕпе (суверенитет, экономика, чăваш пурлăхĕ...) туса хурасси.

Иккĕмĕшĕ – хамăр тĕне, Турра, мăн асаттесем пуç çапса пурăннă чун вăйне тытса тăрасси.

Виççĕмĕшĕ – хамăр Анăçпа Тухăç хушшинче (çĕр-шыв кăвапи) ларнине ăнланса илсе Мускавпа кăна мар, Хусанпа та – Стамбулпа Пекин таранах – суту-илӳ, культура хутшăнăвĕсене йĕркелесе ярасси.

Çак япаласене пĕтĕмпех конкретлă, детальсемпе çирĕплетсе парасчĕ. Хăйне майлă программа, аталану концепцийĕ кирлĕ. Çавна Конгресра йышăнса хăварсан вара эпир хамăра, тен, халăх пек туйса илĕпĕр. Пурнăçа кĕртсен вара ытти халăх та пире сума сăвать пуль тетĕп.

Михаил СУНТАЛ.
*«Хыпар», 1992, авăн, 1.*

## ЙĔРКЕЛӲ КОМИТЕЧĔ: АВРАЛ?

*Иртнĕ эрне вĕçĕнче Чăваш наци конгресĕн йĕркелӳ комитечĕн черетлĕ ларăвĕ иртнĕ. Тĕрĕссипе ку вăл – комитет председателĕ Э. Кубарев хăй хутшăнса иртterекен пĕрремĕш лару, чылай ыйтусене татса пани хальлĕхе уçăмлă мар, çавăнпах-тăр лару та чăкăлтăшрах иртнĕ.*

ЧР Аслă Совечĕн Председателĕ **Э. Кубарев** Аслă Совет Президиумĕ Чăваш наци конгресне малтан палăртнă срокрах – юпа уйăхĕн 8–9-мĕшĕсенче – ирттерме йышăнни пирки пĕлтерчĕ. Конгресс фончĕн пурнăçлав директорĕ Н. Пыркин паян куна 841 пин тенкĕ ытла укçа пухăнни пирки ĕнентерӳллĕ хыпарларĕ пулин те – йĕркелӳ комитечĕн хастартарах та хĕрӳллĕрех çыннисене çакă лăплантараймарĕ.

**Валери Туркай** поэт ЧНК йĕркелӳ комитечĕ çителĕксĕр ĕçлени Чăваш аталанăвĕн партине чунтанах пăшăрхантарнине пĕлтерчĕ, Э. Кубаревăн ытти ĕçĕсем те нумай пулнипе вăл ЧНК ирттерес ыйтупа тимлĕ ĕçлейменнине палăртрĕ, йĕркелӳ комитетне ертсе пырас ĕçе А. Хусанкая уйăрса лартма сĕнчĕ. Лару вырăс чĕлхипе иртни те ун сăмахне çивĕчлетрĕ: «Чăваш сăвăçин ма тăван чĕлхепе калаçма ирĕк çук? Тен, кам та пулин Конгресра буффонада курасшăн? Конгресс – пысăк пĕлтерĕшлĕ Аслă пуху, ăна тĕплĕн хатĕрленсе ирттермелле».

**Энтип Ваççи** поэт çак тĕслĕхсене илсе кăтартрĕ: «Кăнтăр Осетие çарсем кĕртме 46 миллион тенкĕ тăкакланă. Днестр тăрăхĕнчи вăрçа 13 миллиард тенкĕ хывнă, халь вара Чăваш наци конгресне ирттерме кăштах укçа уйăрассишĕн те темле калаçатпăр. Çавна ăнланмалла – халăхсен ыйтăвне кирлĕ пек татса памасан пирĕн тăрăха та граждан вăрçи çитет».

Министрсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ **Ю. Ефремов** Энтип Ваççине «граждан вăрçи тума йыхăрнăшăн» айăпларĕ. Анчах та çак ыйту тĕрĕсех тăнине Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» колхоз председателĕ **А. Айдак** та палăртрĕ: «Акă приватизаци пырать, республика пурлăхĕн пысăк пайĕ кунти тĕп халăх мар çынсен аллине куçать. Çакă хăçан та пулин вăрçă патне илсе пымасть-им? Апла ан пултăр тесен республикăра 68 процент пурăнакан чăваш халăхне экономика, пурлăх тĕлĕшĕнчен хӳтĕлемелли майсем палăртмалла. Конгресс ирттермелли укçа пирки. Чăваш таçта та ĕçлет. Вăйлă ĕçлет. Нивушлĕ 2 миллионлă халăх хăйĕн прависене хисеплеттереймĕ?»

Куратпăр: чăвашлăхшăн тăрăшакансене чылай чухне тăван чĕлхе, тăван культура пирки çеç калаçатпăр тесе айăплаççĕ, сивлеççĕ. Чăвашĕсем хăйсем те. Çав вăхăтрах чĕлхепе культурăран пуçласа экономика, çĕр, политика ыйтăвĕсем патне çитнине, çапла майпа çеç тăван халăхăн пур анлă прависене те хӳтĕлеме май пуррине ăнланмастпăр-мĕн. Тен, ăнланăпăр-ха хăçан та пулин. Тĕрĕссипе – çак ăнлантару ĕçне тумалли хатĕрсенчен пĕри – шăпах Конгресс. Çавăнпах ăна тивĕçлĕ шайра – ХАЛĂХ ПĔЛТЕРĔШЛĔ ШАЙРА – ирттересшĕн те ĕнтĕ йĕркелӳ комитетĕнче тухса каланисенчен чылайăшĕ.

– Тĕрлĕ вырăнсенче конгреса хатĕрленес ĕç пырать: делегатсем суйлаççĕ, Шупашкара шăнкăравлаççĕ, çав ыйтусемпе кăсăкланаççĕ. Процеса чарма юрамасть. Çавăнпа та Конгресс ирттерессине килес çула хăвармалла мар. Тĕплĕнрех хатĕрленме чӳк уйăхне куçарма пулать, – терĕ А.Хусанкай. – Анчах Аслă Совет Президиумĕ мĕнле утăм тăвасса ăнланса илме йывăр.

**А. Айдак** та çакнах палăртрĕ: Конгреса çуллана хăварни – идейăна пунтантарни (тĕплĕ политика калаçăвĕ вырăнне – акатуй-сабантуй), чӳк уйăхне куçарма юрать.

**Э. Кубарев** Конгресс ирттермелли кун тата йĕркелӳ комитечĕн председателĕ пирки лартнă ыйтусене Аслă Совет Президиумĕн çитес ларăвĕнче çĕклеме пулчĕ, анчах питĕ кăмăлсăр: – Афганецсемпе, ветерансемпе, тĕрлĕ партисемпе тĕл пултăм – пур çĕрте те ультиматум...

Çапах та Э. Кубаревăн кунта кӳренме сăлтав çук. Çу уйăхĕн вĕçĕнчен пуçласа паян кунччен Эдуард Алексеевич Чăваш наци конгресĕн йĕркелӳ комитечĕ пирки манса кайнă пекех пулчĕ. Тен, строитель йăли чунра тарăн ларать: патне çитсен çеç – аврал, штурм... Çак ларура палăртрĕ вăл: – Юпа уйăхĕ пуçланиччен эпир питĕ нумай туса ĕлкĕрме пултаратпăр.

Фондăн пурнăçлав директорĕ **Н. Пыркин**, йĕркелӳ комитечĕн председатель заместителĕсем **А. Хусанкай**, **В. Никитин-Станьял** хыпарланисем те чун кĕртеççĕ – ĕçне туман мар, тунă. Анчах çителĕксĕр.

Çавăнпа та йĕркелӳ комитечĕн пур членĕшĕн те, унăн председателĕшĕн те Э. Кубарев хăй каланă сăмах вăйра çеç тăтăрччĕ:

– Юпа уйăхĕ пуçланиччен питĕ нумай ĕç тума пулать. Позитивлă çеç ĕçлемелле.

Халăх хальлĕхе шанать-ха.

Илле ИВАНОВ.
*«Хыпар», 1992, авăн, 8, 176 №.*

## ФИЛОСОФ КУÇĔПЕ ПĂХАР

*Тутарсем хăйсен конгресне ирттерчĕç ĕнтĕ. Аван ирттерчĕç. Çакна эпĕ хаçат тăрăх анчах каламастăп, Конгресс хыççăнах ман Хусана темиçе хут та кайса килме тӳр килчĕ, эпĕ унта тĕрлĕ халăхсен кăмăлне тĕпчерĕм. Вĕсенчен пĕри те Тутарсен наци конгресне хирĕç пĕр сăмах та каламарĕ, пурте Тутар Республикин правительстви çинчен ăшă сăмахсемпе анчах калаçрĕç. Эпĕ унта «Конгресра укçа тăкрĕç» тенине те илтмерĕм.*

Тата тепĕр сăмах каласа хăварас килет: Хусанта тухса тăракан хаçатсенче ĕçе кĕме чĕнекен пĕлтерӳсем чылайрах пичетленеççĕ, ытти облаçсемпе танлаштарсан, Хусанта забастовкăсемпе тата ĕçрен кăларассипе хăратни çинчен те илтмерĕм. Тĕрĕссипе каласан – тутарсем те, вырăссем те, ытти халăхсем те Тутар Республикин Президентне суйласа тĕрĕс турăмăр теççĕ. «Йĕркеллĕ çынна Президента суйланипе пурăнма та лайăхрах, йĕркеллĕ çын Президентра чухне тутара та, вырăса та, чăваша та начар пулма пултараймасть» текенсем те пур. «Тутарсем вырăссемпе чăвашсене тата ытти халăхсене хĕсĕрлеççĕ, Тутар республикинчен хăвалаççĕ» текен сăмахсен суйи çиеле тухрĕ. Çак сăмахсене халăха юриех пăтраштарса яма тăрăшакансем анчах калама пултараççĕ – тутарсем çын пек пурăннăшăн кĕвĕçнипе.

Эпĕ Хусан урамĕсем тăрăх пĕччене кăнтăрла та, каçхине те çӳрерĕм, мана никам та тапăнмарĕ, никам та кӳрентермерĕ, урам ячĕсене, кирлĕ организацисен вырăнĕсене ыйтсан та тĕплĕн ăнлантарса ячĕç. Хусан çыннисем кăмăллă пулни мана, паллах, питĕ савăнтарчĕ. Хам ăшра эпĕ тутарсем пек пурăнса курасчĕ тесе темиçе те шутларăм. Хам куçпа курса çӳрени, паллашни маншăн питĕ лайăх пулчĕ. Хусанти нимĕнле организацире те мана чăваш пулнăшăн никам та кӳрентермен.

Çавăнпа та эпĕ хамăрăн Конгреса ирттериччен тутарсен опычĕпе паллашма сĕнсе пăхасшăн, мĕншĕн тесен пирĕн тутарсенчен чылай вĕренмелле. Хальхи вăхăтра тутарсем пек ырă тĕслĕхлĕ республикăсем çук-ха.

Анчах эпир хальхи вăхăтра конгреса хатĕрленетпĕр-ши?

Чăваш наци конгресне хирĕç кĕрешекенсен микротиражлă хаçачĕ чăваш халăхне пăтраштарас енĕпе чăнах та «улăплах» ĕçлет ĕнтĕ: хăйĕн

27-мӗш номерӗнче «Меморандум» по поводу решения проведения III всечувашского конгресса (съезда)», 28-мӗш номерӗнче «Постановление пленума правления Чувашского общественно-культурного центра» ятлӑ ӗҫсем пичетлесе кӑларчӗ. Ку хаҫат пӗлтӗр Атнер Хусанкая хирӗҫ чӑвашлах шӑв-шав кӑларатчӗ, кӑҫал вара, тем ӑс кӗнипеле, вырӑсла шавлама тытӑнчӗ, пурӑна киле, тен, тутарла та юрласа пӑхас тейӗ – Президента суйламалли вӑхӑт ҫитсе пырать...

Урлӑ-пирлӗ сӳпӗлтетекенсем пирки чарӑнса вӑхӑта сая ярас мар, вӗсене такам та пӗлет пуль тетӗп, мӗншӗн тесен вӗсем пӗлтӗр Чӑвашсен пӗрремӗш президентне суйланӑ чухне чӑрмантарма хӑтланчӗҫ – ҫавӑнпа та эпӗ вӗсен хушаматне те, ятне те, хаҫачӗн ятне те аса илесшӗн мар. Тивӗҫ мар вӗсем ятран асӑнма.

Ҫапла вара пирӗн, ҫакӑн пек пӑтӑрмахсем малалла сиксе ан тухчӑр тесен, вӑхӑта сая ямасӑр пӗрле пухӑнса, пӗр шухӑшлӑ пулса, пӗр чӑмӑр пек пӗрлешсе чун-чӗререн калаҫмалла, пӗр чӗлхеллӗ пулса чӑвашӑн культура шайне ҫӗклес, чӑваш экономикине, философине, тӗрлӗ наукӑсене йӗркелесе ярас пирки чунтан калаҫмалла.

Чӑвашла наукӑсем тумасӑр эпир чӑваш чӗлхипе литературине аталантарма пултараймастпӑр, мӗншӗн тесен хальхи вӑхӑтра Чӑваш Республикинче чӑвашла шутласа наука ӗҫӗсене те чӑвашла тӗрӗс ӑнлантарса паракан ҫынсем ҫукпа пӗрех.

Пӗлтӗр эпӗ ҫак шухӑшсем пирки тӗнчипе паллӑ чӑваш поэчӗпе Геннадий Айхипе калаҫрӑм. Вӑл манпа килӗшрӗ. Ара, эпир хамӑр шухӑшсене, наукӑри ытти ӗҫсене чӑвашла ҫырма вӗренсе ҫитсен пирӗн чӗлхе пуянланать, вара поэтсемпе писательсем пурнӑҫпа тан пырас тесе тата та лайӑхрах, шаблонсӑр произведенисем ҫырма вӗренӗҫ. Поэт-писательсем ученӑйсемпе, экономистсемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлеме тытӑнсан чӑвашла ҫырнӑ ӗҫсем те нимӗнле тӑкаксӑрах пичетленсе пырӗччӗҫ. Хальхи вӑхӑтра кашни писателӗнех укҫа-тенке ҫӗнӗлле ӗҫлесе илме вӗренмелле.

Йӗркеллӗ пурӑнас тесен бухгалтери ӗҫӗсене пӗлни те питӗ аван пулмалла – чӑвашла юрласа-ташлама анчах пӗлни питӗ сахал. Чылайӑшӗ халӗ те ҫакна ӑнланса ҫитесшӗн мар, вӗсем чӑвашла лайӑх юрлакан тата ташлама пӗлекен ҫынна ҫеҫ культура енӗпе ӗҫлеме пултаракан ҫын теҫҫӗ. Тӗрӗссипе каласан вара тӗрлӗрен наукӑсемпе тата политикӑпа интересленмелле, вӗсене ӑнланма тӑрӑшмалла. Чӗлхепе литература наукӑсемпе ҫыхӑнмаҫҫӗ пулсан, ун пек чӗлхепе литература аталанаймаҫҫӗ тата вӗсен пӗтесси те ҫӑмӑл.

Хальхи вӑхӑтра пирӗн чӑваш чӗлхине шӑпах ҫак шӑпа лекрӗ те ӗнтӗ. Юлашки пӗр-икӗ ҫул хушшинче чӑвашла ҫырнӑ наукӑсене йӗркелеме тытӑнмастпӑр пулсан эпир аталанаймастпӑр.

Хамӑрӑн пуҫсене ӗҫлеттермелле. Ҫитет кахалланса пурӑнма. Чӑвашӑн чӑваш пурнӑҫне ӑнланса илмеллех ӗнтӗ. Мӗн чухлӗ пӗрле калаҫмаллисем. Ҫавӑнпа та эпӗ кашни чӑвашах Конгреса лайӑх ирттерес тесе май килнӗ тарӑн мӗнпе те пулин пулӑшма ыйтатӑп. Хальхи вӑхӑтра пирӗн хирӗҫме вӑхӑт ҫук, алла-аллӑн тытӑнса, пӗр кӑмӑллӑ пулса Конгресс ирттерме тӗплӗн хатӗрленмелле.

Пӗлтӗр эпӗ хӗрарӑмсен 1-мӗш съездӗнче пултӑм, вӑл икӗ куна пычӗ. Ҫакӑн пек халӑха пухма пултарнӑшӑн эпӗ Раиса Сарпине пысӑк тав калама пултаратӑп. Съездӑн ӗҫ пахалӑхне пӑхсан вара... Съездра тухса калаҫакансенчен пӗри те никама та кирлӗ канаш пама пултараймарӗ. Чӑваш-ученӑйсем шалт тӗлӗнтерчӗҫ, пӗри те чӑваш халӑхӗ умӗнче чӑвашла калаҫма пӗлмерӗ.

Чӑваш университетӗнче философи наукине вӗрентекен философ-ученӑй чӑвашла шухӑшласа калаҫма пачах пӗлмест иккен, ҫавӑнпа та вырӑсла анчах калатӑп терӗ. Ҫакна курсан эпӗ ӑҫтан-ха ӑна чӑваш философӗ теме пултаратӑп. Ун ученӑй степенӗ мӗн тума кирлӗ? Мухтанса ҫӳреме анчах.

Кайран ҫак философ тата тепӗр тӗлӗнтермӗш кӑтартрӗ: те съездра ларакан хӗрарӑмсенчен кулас шутпа, те пӑлахая персе – янраттарчӗ чӑваш юрри, унтан халӑх умне саркаланса тухса уткаларӗ, ура хуҫса ташша ямани анчах юлчӗ. Философ ҫапла хӑтланнине курса хӗрарӑмсем чылай алӑ ҫупрӗҫ.

Туй ачи пек саркаланакан философ кам пулнине лайӑхрах пӗлес тесе малта ларакан хӗрарӑмсенчен ыйтса пӗлтӗм, вӗсем вӑл чӑвашсен паллӑ юрӑҫи терӗҫ.

Ҫак философ хальхи начар вӑхӑтра, хӗрарӑмсене ӑс-тӑнпа пулӑшас вырӑнне, туй ачи пек саркаланса юрласа ҫӳрени пачах килӗшмерӗ. Кун пеккине Конгресра курас марччӗ.

Пирӗн хамӑрӑн наукӑсене йӗркеленӗ чухне Марк Туллий Цицеронӑн пирӗн эрӑччене хи (106–43 ҫҫ.) ӗҫӗсене тишкерни питӗ кирлӗ пулӗ. Цицерон хӑйӗн тӑван ҫӗр-шывне питӗ юратнӑ. Вӑл Рим империйӗнче наукӑсене хӑйсен – латин – чӗлхипе йӗркелесе яракансенчен пӗри. Цицеронччен ученӑйсем грек чӗлхипе калаҫнӑ, латин чӗлхипе, пирӗн хальхи Чӑваш Республикин пек, литературӑра анчах уса курнӑ. Вӑл вӑхӑтри ученӑйсем те наука ӗҫӗсене грекла анчах ҫырма пулать тенӗ, латинла философи пулма пултараймасть текенсем те пулнӑ. Цицерон ҫакӑнпа килӗшесшӗн пулман, вара никама итлемесӗрех хӑйӗн философи ӗҫӗсене латинла ҫырма тытӑнать, грексен философине малалла аталантарнӑ ӗҫсене те латинлах ҫырать.

Эпӗ хамӑрӑн чӗлхепе культурӑна яланлӑхах сыхласа хӑварас тесе наука ӗҫӗсене чӑвашла ҫырса вӗрентме сӗнесшӗн. Саркаланса юрласа ташша ҫапнипех малалла каяймӑпӑр. Юрӑсене каннӑ чухне юрлӑпӑр, халь пирӗн мӗн пур ӗҫе чӑвашла туса пыма вӗренесчӗ.

Валерий ФИЛИППОВ, ЧАПӑн Канаш хулипе районӗн комитечӗн членӗ.
*«Хыпар», 1992, авӑн, 17, 184№.*

## ХАЛӐХӐМӐРА ТӖП ИДЕЯ КИРЛӖ

*Раҫҫей империйӗнче пурӑнакан пӗчӗк йышлӑ халӑхсен пысӑк трагедийӗ вӑл вырӑссем хыҫҫӑн васкавлӑн «европӑланса» пыни, община пурнӑҫӗнчен тӳрех индустри цивилизацийӗ ярса пусни. Урӑхла каласан, ҫӗнӗ ӑнлавсем чӑвашӑн традицилле ӑнлавӗсемпе, пурнӑҫӗпе хирӗҫме пуҫлаҫҫӗ. Паллӑ ӗнтӗ, Европа ҫынни хӑйсене ҫут ҫанталӑкран ҫӳлерех лартать, ытти ҫынсен хушшинче те мӑнаҫланма, маларах пулма тӑрӑшать. Экономикӑри тата чун-чӗрери улшӑнусем ӗмӗрсем хушши ҫирӗпленнӗ ӗненӳсене аркатаҫҫӗ, вӗсен вырӑнне урӑххисене параймаҫҫӗ. Ҫынсен ӑшӗнче пушӑлӑх, чунсӑрлӑх-чӗресӗрлӗх, хаярлӑх-курайманлӑх хуҫаланма пуҫлаҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ чӑваш та пӗртен пӗр турӑ, вӑл ҫут ҫанталӑка ҫӑварлӑхлакан; уншӑн нимӗнле чарак та ҫук, вӑл ҫӗмӗрме-ватма именсе тӑмӗ текех.*

Юлашки икӗ вунӑ ҫуллӑхра тӑван ялӑмра вун-вун ентешӗм сарӑмсӑр вилчӗ. Вӗсенчен чылайӑшӗ 30–40-мӗш ҫулсенче ҫуралнӑ. Ҫав ҫынсене революцичченех ҫуралнӑ аслашшӗ-асламӑшӗ пӑхса ҫитӗнтернӗ, эппин, вӗсем чӑвашӑн традицилле воспитанине илнӗ, традицилле пурнӑҫпа пурӑнма хатӗрленнӗ. 50-мӗш ҫулсенче индустри цивилизацийӗ чӑваш ялне те пырса кӗрет: йӑла-йӗркесем пӗтсе лараҫҫӗ, тӗнсӗрлӗх тапхӑрӗ пуҫланать, ҫамрӑксене хуласене вӑйпа илсе каяҫҫӗ, таракансене тӗрмене лартаҫҫӗ т. ыт. те. Вӑрҫӑ ҫулӗсенче йывӑр пурнӑҫа пула ханшаэрехпе туслашнӑ чӑваш сӑлтавсӑрах майӗпен ӗҫме пуҫлать. Пирӗн ялта, эпӗ ас тӑвассах, пӗр-икӗ ӗҫкӗҫрен ытла марччӗ, ӗҫкӗсем иккӗмӗш кунччен сайра-хутра кӑна пыратчӗҫ. Ытларах юрлатчӗҫ, ташлатчӗҫ вӗсенче, ураран ӳкекен ҫукрахчӗ. Каярах савӑнӑҫ шавӗ вырӑнне урмӑшнисем ытларах илтӗнме пуҫларӗҫ. 70-мӗш ҫулсенчи ӗҫкӗсем вара эрне тара-

нах пыратчĕç, ӳсĕрсем пӳртре çеç мар, урамсенче те йăваланатчĕç ĕнтĕ. Çав çулсенчех сарăмсăр вилекенсен шучĕ те чылай нумайланчĕ.

Чăвашăн çак чирĕ индустри цивилизацийĕ вăй илнĕçемĕн тарăна кайсах пычĕ, халăхăмăр ăна хирĕç кĕрешме иммунитет тупаймарĕ.

Шырать паянхи наци интеллигенцийĕ çав иммунитета, чăваш халăх пулма пăрахас хăрушлăх пуррине аван туять вăл. Халăх тени вара çын кĕтĕвĕнчен хăйĕн идеалĕ пуррипе уйрăлса тăрать. Эппин, халăхăмăрăн, çак çĕр çинче упранса юлас тесессĕн, хăйĕн тĕп шухăшĕ – идейи – пулмалла.

Интеллигенцин пĕр пайĕ çав идейăна халăхăмăра чăмăртанма («Чăвашсем, чăмăртанăр!») е пĕрле килĕштерсе пурăнма («Пĕрле пурăннине мĕн çитет») чĕннинче курать. Анчах та чăмăртанма та, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма та идея кирлĕ-çке! Çын чăмăртанассишĕн чăмăртанмасть, пĕрле пулассишĕн пĕрлешмест.

Мăсăльмансемпе христиансем тĕн тавра чăмăртанаççĕ, çавна май вĕсем ют тĕне ĕненекен халăхсене хирĕç тăраççĕ. Ку ĕнтĕ тулашри тăшман тупса чăмăртанни. Çак çул национал-патриотизм е шовинизм (панисламизм, славянофильство) патне илсе çитерме пултарать, халăхăмăра тĕне пула пайласа ярать. Пирĕн çул ан пултăрччĕ вăл.

Тепĕр çулĕ хамăрăн йăла-йĕркепе культурăмăра-чĕлхемĕре юратни урлă чăмăртанни, пĕр-пĕрне çывăх туйни (Çеçпĕл Мишши «Чăваш чĕлхи ячĕпе пурте пĕр пулар!» тесе йыхăрнине аса илер). Çав туйăм пирĕн вăйлах-ха, ытларах чухне вăл Чăвашран инçетре пурăннă чухне хытах палăрать. Юлашки çулсенчи тĕпчевсем çакна кăтартса пачĕç: чăваш хăйне ытти халăхсенчен чи малтан чĕлхепе культурăна, унтан йăла-йĕркене пула уйăрать.

Чăваш культури пирĕн пушаннă чунсене пуянлатĕ, пурнăç савăнăçне туйтарĕ. Кунта çыравçăсемпе ӳнерçĕсен, илемлĕ пултарулăх çыннисен пайти пысăк пулмалла ĕнтĕ. Уйрăмах халăх юрри-ташшине, сăмахлăх çӳпçинчи ылтăн-кĕмĕле çынсем патне çитермелле. Паян, рынок экономикине кĕнĕ чух, халăх культурине çынсем патне çитерес ыйту кăткăслансах пырать.

Кунта манăн ытларах чăваш йăли-йĕрки çинчен каласас килет.

Европа çыннисем хăйсене çут çанталăка пăхăнтаракансем тесе ĕненнĕ пулсан, ĕлĕкхи чăваш вара хăйсене çут çанталăкăн пĕр пайĕ тесе шутланă. Кай енче пурăнакансемшĕн вăхăт анаталла кусакан кустăрма пек ыткăннă. Ази çыннисемшĕн (чăвашшăн та) вăл çĕрпе кун, уйăхпа çулталăк тулса таврăннăн, хумăн-хумăн кумнăн туйăннă. Çут çанталăкăн, тĕнчен хăйĕн çемми-таппи пур, çыннăн çавна туйса, унпа çураçăнса пурăнмалла. Ахальтен мар чăвашсем туйсене ĕлĕкрех çимĕк тĕлнелле ирттернĕ. Çав вăхăтра Çĕрпе Пĕлĕт пĕрлешнĕ, Çĕр-Анне çие юлнă. Чăваш вара Çинçе (Уяв) ирттернĕ, çĕр ĕçĕ ĕçлемен, хĕрлĕ кĕпе (уйăх хушши палли) тăхăнман.

Çут çанталăка çывăх пулни чи малтан унăн çут çанталăклăхне чăрмантарманнинче палăрнă: çитĕнекен курăк-чечеке Çимĕкчен татман-хуçман, пан улмине Сăпасчен тутанман т. ыт. те. Чăваш ăнланнă тăршшĕн – кашни япалан хăйĕн майĕ, кашни чунăн хăйĕн çулĕ пур. Усал-тĕселе тĕкĕнме хушман, вăл хăйĕн çулĕпе хăй çӳретĕр тенĕ. Чăваш çапла шухăшланă: кашни япалах çынна ырă та, хур та тума пултарать. Вĕсемпе кĕрешмелле мар, çураçăнса пурăнма тăрăшмалла (кĕрешекен тăшман тупать, ураçăнакан юлташ тупать). Вилнĕ ваттисемпе те, Турă-Киреметпе те йывăç урлă çыхăннă. Вилнĕ çынна ыттисемпе хутăштарнă чух пирĕн енче халĕ те унăн чунне пахчари йывăç патне апат-çимĕçпе тухса ăсатса яраççĕ. Тата тепĕр уйрăмлăх: Мăн Турăран пуçласа Çил таранах хайсен йышĕпе пурăнаççĕ имĕш, вĕсен ашшĕ, амăшĕ, ачисем пур. Картишĕнче Карта хуçипе унăн йышĕ пурăнать, вучахра – Вут йышĕ, мунчара – тĕрлĕ Ийе тавраш. Пуринпе те килĕшӳ тупмалла, унсăрăн пурăнăç ăнаймĕ. Эпир çак ĕненӳре ку таранччен тĕшмĕшлĕх кăна курнă. Тĕрĕссипе вăл çынсен хушшинчи хутшăнусене йĕркелесе тăнă.

Çапла вара чăваш йăли-йĕркипе ĕненĕвĕ çынна çут çанталăкпа çывăхлатнине, ыттисемпе çураçăнса пурăнма вĕрентнине куртăмăр.

Халăхăмăр йăлисем пире ытти ĕçсене-ăнлавсене те вĕрентеççĕ: çĕннине тунă чух киввине ан сивле (халăхра урăхла та калаççĕ: «Аттуна тăхăн та çăпатуна кăларса ан пăрах», «Пурнан пурнăçра катăк пуртă та кирлĕ пулать»), инкекри çынна пулăш (кĕлĕсенче çапла сăмахсем тĕл пулаççĕ: «Эй Турă! Шăнса çӳрекене ăшăтса ямалăхне пар, выçă çӳрекене тăрантса ямалăхне пар...»).

Çаксем пурте наци тĕп идейинчен – çураçу идейинчен – тухаççĕ. Çут тĕнче, çут çанталăк – пысăк организм. Пирĕн, унăн пĕчĕк пайĕсен, унпа çураçăнса пурăнмалла. Çак тĕп шухăша наци пĕтĕм культури, çав шутра йăли-йĕрки те пăхăннă. Тĕрĕссипе ăна Христос тĕнне ĕненекен чăваш та сивлемест. Троицăна Çимĕкпе, Питрава уй чӳкĕпе, кĕрхи Микулана кĕр чӳкĕсемпе пĕрлештерсе янă. Илен, пыл сăпасĕ, улма сăпасĕ – çак йăласем те çут çанталăк çимĕçне вăхăтсăр татма е çиме юраманнипе çыхăннă. Вырăс тĕнне кĕмен чăвашсем православин чылай уявне хăйсене май уявланă. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх – Чăвашкассинче (Ульяновск облаçĕ) кĕрхи çурта кунне çулсерен ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне ирттерме тăрăшаççĕ.

Халĕ эпĕ чи кирлĕн туйăнакан шухăшăма каласшăн: чăваша чиркӳ те, киремет те мар, йăла-йĕркемĕрсене уяни чăмăртаса пĕрлештерет. Ан тив, кирек хăш тĕне уятăр вăл е атеист пултăр, енчен те чăвашсен пĕлтерĕшлĕ йăлисене ирттерет пулсассăн çав çын наци идейине ăша хыватех.

Йăласене чĕртсе тăратас, аталантарас тесессĕн журналистсемпе тĕпчевçĕсен е культура ĕçченĕсен çеç мар, тӳре-шаран та тăрăшма тивет. Чи малтан наци конгресĕн ЧР Аслă Советне наци уявĕсене çирĕплетес тĕлĕшрен сĕнӳсем тăратмалла. Хамран эпĕ официаллă йĕркепе çирĕплетме çак уявсене сĕнетĕп: Мункун (Калăм), Çимĕк (Троица), Кĕрхи çурта (Юпа, Ваттисене асăнни). Мункуна асап эрнинчи кĕçнернн кунран пуçласа вырсарни кунччен, Çимĕке Троицăчченхи кĕçнерни кунран пуçласа вырсарни кунччен, Кĕрхи çуртана вара Микула умĕнхи шăмат кун ирттерни вырăнлă. Çак уявсене чăн чăваш тĕнĕпе пурăнакансем те, православи тĕнне уякансем те хапăлласах йышăнĕç. Мункунпа Çимĕке тĕрлĕ вырăнта тĕрлĕ кунсенче ирттернĕрен эпĕ тăвата кун таранах уявлама сĕнетĕп. Çавăн пекех Питрав (Уй чӳкĕ) та, Сурхури (раштав) те илемлĕ уявсем пулма пултараççĕ.

Юлашкинчен, сăмахăма ăслăлăх çине куçарса, хам В. Филипповăн «Философ куçĕпе пăхар» статйинчи («Хыпар», 1992, авăн, 17) шухăшсемпе килĕшнине палăртасшăн. Ăслăлăх ĕçĕсене чăвашла çырмасан, чăвашла шухăшлама вĕренмесен эпир хамăрăн тĕпчевçĕ чĕлхеçĕсенчен те, сăмахлăхçă-философсенчен те пайта кĕтсе илеймĕпĕр. Гуманитари тĕпчевĕсене пирĕн диалектика материализмне тĕпе хурса мар, чăваш наци тĕп идейисене ăша хывса çырмалла, кĕрешӳ вырăнне çураçу шырамалла, халăхăмăр пурăнăçне çут çанталăк çаврăнăшĕпе шайлаштарса тишкермелле е сăнламалла, халăхăмăрăн çураçу философине ăслăлăх шайĕнче тĕпчемелле.

Виталий РОДИОНОВ.
*«Хыпар», 1992, авăн, 23.*

## ШАНЧĂК – ÇАМРĂКСЕНЧЕ

Кирлĕ-и чăвашсене наци конгресĕ? Кирлĕ пулсан – мĕншĕн?

Унччен, истори еннелле çаврăнса, çапла каланă пулăттăм. Курбский князь 1952 çулта Хаяр Иван çарĕ Хусана вăрçăпа похода тухнă пирки çапла çырса хăварнă: «Сăр шывĕ урлă каççан пире хирĕç пилĕк çĕршерĕн, пиншерĕн чăвашсем тухрĕç, вĕсем патша çарĕ килнине курса савăнчĕç».

Савăнăç вăраха пыман. Хусан ханĕ аллинчен тухнă-тухманах чăвашсене вырăс тÿре-шари сăнчăрĕ пăва пуçланă. Пăкачав пăлхавĕ хыççăн чăваш пурнăçĕ тата темиçе хут йывăрланнă: кула-най çине куланай тиеннĕ, чăваш çурăмĕ çинчи юнлă саламат йĕрĕ типе пĕлмен. Ăна тимĕр-тăмăр тытма, унтан хĕç-пăшал мар, çĕçĕ-пăшатан, сăнчăр-çăра тарăн тума та чарнă. Чăваш ялĕсенчи тимĕрçĕ лаççисене вырăссен аллине панă, чăваш тимĕрçисен ăрăвне пĕтернĕ. Кайран кулнă: чăвашсем йывăç суха пуçĕсĕр пуçне нимĕнле тимĕр-тăмăр ремеслине те пĕлмеççĕ. Чăваш историкĕсем çакна пĕлмеççĕ мар, анчах ун çинчен КПСС Чăваш обкоме «ырланă» кĕнекесенче çăвар та уçмаççĕ.

1917 çулхи Октябрьти революци, чăнах та, вак халăхсене ирĕккĕн аталанма май панă: шкулсем, клубсем уçнă, хаçат-журнал, кĕнеке кăларас ĕç питĕ хăвăрт ÿссе кайнă. Анчах ăшă çанталăк нумая пыман – чăваш тата хăрушăрах диктатура аллине лекнĕ. Çулталăкра пĕрре, Мăнкун кунĕ, атă тăхăнса курнă чăваша, халăх тăшманĕ е эксплуататор картне лартса, Çĕпĕре, сивĕ те выçă лагерьсене хăваласа янă.

Отечественнăй вăрçă хыççăн тата тепĕр хум çĕкленнĕ. Çиме-ĕçме çукран, вилĕмрен çăлăнас тесе, нумай-нумай чăваш Çĕпĕр еннелле сулăннă. Вĕсен ывăлĕ-хĕрĕ пĕр 20–30 çул хушшинче чăвашлăха çухатрĕ: чĕлхине, йăли-йĕркине, юрри-ташшине манчĕ. Халĕ ав ашшĕ-амăшĕ çине йĕрĕнсе пăхать.

Маннă-и чăваш тата çак хĕн-хура? Çук. Пирĕн ăшра вут çунать, сулăм тухни курăнмасть.

Малалла мĕнле пурăнмалла чăвашăн? Мĕн кирлĕ ăна? Мул? Кам мулне туртса илесшĕн вăл? Никам мулĕ те кирлĕ мар ăна. Вăл хăйсене упраса хăварасшăн.

Шупашкартах, чăвашăн тĕп хулинче, унтан начар пурăнакан тата кам пур-ши? Çичĕ ютран килсе тулнă партхозноменклатура пуять, алхасать. Вăл чее: чăвашран тÿрех кулмасть, чăваш хуçисен умĕнче йăпăлтатса мĕскĕн чăвашăн тирне сĕвет.

Ак мĕн çинчен калаçмалла Чăваш конгресĕнче. Чăвашсем паян та чăмăртанмасăр юлсан – вăл халăх пĕтнĕ тесен те юрать.

Ĕнерхи партократсемпе шовинистсем çакна сисеççĕ, туяççĕ. Чăваш хăй тĕллĕн пĕр утăм тусанах – хурах та хурах! Çăлăр! Чăваш националисчĕсем пĕтереççĕ тесе ăçта килчĕ унта кăшкăраççĕ. Анчах чăваш нихçан та националист пулман. Вăл хăйпе шайлă вырăспа ĕмĕртен ĕмĕре туслă пурăннă, нумай кирлĕ япалана вырăсран вĕреннĕ. Çавăншăн ăна эпир тав тăватпăр.

Ан итлĕр йăх-яха, ан хăрăр вĕсенчен! Вĕсем янăрани пĕр хăлхана кĕтĕр те тепĕринчен тухтăр.

*Пирĕн шанчăк – çамрăк чăвашра. Чăваш аталану юхăмне (ăна манăн парти тесе калас килмест) çамрăксен ертсе пыраççĕ. Пĕри те хăравçă мар. Турă сывлăх патăр вĕсене чăваш çулĕнчен пăрăнмасăр пыма.* Анчах ку ахальтен пулас çук. Чăваш ĕçне тĕрĕс-тĕкел тăвасах тесен наци шкулĕсем уçмалла. Пире чăвашла, вырăсла, акăлчанла, нимĕçле, французла тата ытти чĕлхесем пĕлекен çамрăк талантсем кирлĕ. И.Я. Яковлев чăваш çамрăкĕсене ют патшалăхри университетсенче вĕрентме ĕмĕтленнĕ. Ăна пирĕн çамрăк студентсен пурнăçламалла.

Чăваш конгресне хутшăнакансем эпĕ хускатнă шухăшсене те ман-масса шанассăм килет. Аван иртĕрччĕ Наци конгресĕ, вăл чăваш халăхĕн асĕнче юлтăрччĕ.

Михаил ФЕДОТОВ.
*«Хыпар», 1992, авăн, 24.*

# ХАМĂРĂН ФИЛОСОФИ КИРЛĔ

Чăваш наци конгресне пухăнас кун çывхарса килет. Ку пысăк ĕç кашни çыннах хускатать. Эпир хамăр çак тĕнчере камсем пулни, пире мĕнле пуласлăх кĕтни кăштах та пулин шухăшлаттарать. Ку енĕпе питех те интереслĕ статьясем пичетленсе тухрĕç. Вĕсен хушшинче манăн М. Сунталăн «Пурнăç векторĕ» тата В. Родионовăн «Халăхăмăра тĕп идея кирлĕ» статйисене асăнас килет. Çак калаçăва хутшăнса пĕр-ик сăмахпа та пулин хамăн шухăшăма каласшăн.

Наци туйăмне тытса пыма пире чи малтан мĕн кирлĕ-ха? Халăха пĕтĕçтерсе, аталантарса пыракан тĕп шăнăр – наци философийĕ, ăс-тăн парса, ертсе пыракан вĕрентÿ кирлĕ. Пирĕн вăл çук. Акă, сăмахран, тĕнчере вăйлă, ăнăçуллă, чи малта пыракан халăхсенех илер: еврейсене, яппун-сене тата ыттисене те. Мĕншĕн вĕсем яланах ăнăçлă аталанса пыраççĕ? Пурнăç темĕнле пăтратса, сапаласа ярсан та вĕсем хăйсен халăхĕн тивĕçне çухатмаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсен хăйсен уйрăм философи вĕрентĕвĕ пур. Çав вĕрентĕве ачаранпах алла илсе пыраççĕ, йăли-йĕркине, культу-рине пăрахмаççĕ, пĕр-пĕрин хушшинчи çыхăнăва татмаççĕ. Рабочи те, академик те, хăйĕн халăхĕн йăли-йĕркине çирĕп тытса пыраççĕ.

Пирĕн, чăвашсен, ку енĕпе мĕн пур? Ĕлĕк-авалтанпа сахал мар ăсчах пулнах ĕнтĕ пирĕн те. Вĕсем хăйсен ачи-пăчине, мăнукĕсене нумай ăс панă пулĕ, анчах та пĕтĕмлетсе çырса хăварайман. Вăхăт иртнĕ май çав вĕрентÿ сĕвĕрĕлсе пынă, истори çулĕн кукрашкисенче вакланса, вĕтелсе кайнă, çухалса пĕтнĕ. Ваттисен сăмахĕсем, йăли-йĕрки пур-ха, упранса юлнă кăштах, анчах вĕсем, ман шутпа, нацишĕн çÿллĕрех пусăма çĕкленме çителĕксĕр. Çавăнпа та Конгресс иртсерес енĕпе ĕçлекен ертÿçĕсене çакна калас килет: пирĕн, чăвашсен, çĕнĕ çак тапхăртан пуçласа та пулин халăхăн философиллĕ шухăшне пуçтарса, пĕтĕмлетсе çĕнĕрен никĕс хурас пулать. Çакăн пирки чăваш ăсчахĕсене ларсах шухăшлама сĕнесшĕн эпĕ.

Чăваш наци академийĕн çак ĕç пирки тĕплĕн шухăшласа пăхмалла. Еплерех тĕп енсем пулмалла-ха çак вĕрентĕвĕн? Пирĕн, чăвашсен, хамăрăн уйрăмах палăрса тăракан вĕрентĕвĕн тĕп енĕсем, ман шут-па, тăваттă.

**Пĕрремĕшĕ вăл – Пĕрлĕх («чăвашсем, чăмăртанăр»).** Ку юхăм тапраннă ĕнтĕ; вăл питĕ паха.

**Иккĕмĕшĕ – Сутă тĕнче.** Таврари сут çанталăк урлă та, Аслă тĕнче урлă та каçса каяймăпăр ниçта та. Сутă тĕнчене ăнланма тăрăшса, ăна хисе-плесе, пуç тайса, таврари сут çанталăкпа шайлашса пырсан çеç ăнăçлăн аталанма пултарăпăр. Сутă тĕнче этеме хăват парать, ертсе пырать.

**Виççĕмĕшĕ – Аталану.** Тĕнчере, халăхсен хушшинче эпир пĕлменни, ăнланманни питĕ нумай. Пирĕн яланах çавна ăнланса алла илме тăрăшмалла. Ытти çынсем пĕлнине эпир паян мĕн пĕлсех çитерейместпĕр, урăх халăхсем ăнланнине эпир мĕн чух-ласах çитерейместпĕр? Мĕнле пуласлăх кĕтет пире? Хăш еннелле каймалла? Мĕн патнелле туртăнмалла? Пирĕн малаллах ăнтăлмалла, пĕлменнине пĕлме, ăна алла илме тăрăшмалла, çавăн чухне çеç аталану пулĕ. Сăмах май каласан – авалхи чăваш тĕнĕ философи шухăшĕпе, аталану туйăмĕпе палăрсах тăман пек туйăнать мана. Çавна уйрăммăн асра тытма сĕнес килет, урăхла каласан – паянхи ăслăлах шайне шута илсе ăна пуянлатмалла.

**Тăваттăмĕшĕ – Пурлăх.** Çĕр çинче пурăнакан этемшĕн экономика – тĕп тĕрек. Çуклăхпа чухăнлăх халăха çÿле çĕклеме чăрмантараççĕ. Эпир хамăр хушăра çапла калатпăр: «Манăн нимĕн те çук, кулян-малли те çук», – тетпĕр. Мухтанмалла-и вара хамăр чухăншăн? Чăвашсем ĕмĕрех çуклăхпа нумай терт-нуша курнă. Çав нуша пире малалла кайма чарнă. Республика экономикине аталантарма ăнтăлса

уйрăм çынсем те лайăххах пурăнма пултарччăр тесе тăрăшмалла, май памалла. Вăл пире малалла аталанма пулăшакан тĕрек пулса тăрĕ. Хамăр ÿснĕ вăхăтра пире урăхларах вĕрентетчĕç. Çавна пула пĕр-пĕрне вĕчĕрхенсе те ăмсанса ура лартма тăрăшатчĕç. Çапла вара тăратпăр пĕр пек чухăнлăх шайĕнче, хамăр та мала каяймастпăр, ыттисене те чаратпăр. Эпир политзаняти итлесе ларнă вăхăтра çынсем таçта малта ĕрĕхтерсе çеç пыраççĕ. Пирĕн вара, ваттисен сăмахĕпе каласан, «Чăваш политзаняти итлесе нимсĕрех тăрса юлнă»,— темелли çеç юлать.

Чăвашсен интеллигенци пулман. Малтанхи вăхăтра, 1917 çулччченхи тапхăрта, кăштах калчаланма пуçланă интеллигенцие пĕтерсе хунă. Кайран çĕкленнисенче вара чăвашлăх пĕтсе пынă. Çавăнпа та юлашки вăхăтра интеллигенци хушшинче чăн-чăн чăваш ертÿçисем палăрни мана савăнтарать. Г.Н. Волков, А.П. Хусанкай, А.П. Айдак тата ыттисем чăваш халăхне чылаях малалла туртма пултарĕç тесе шанас килет. Вĕсем хыççăн пулас ăруран татах çавăн пек ăсчахсем тухĕç, çÿлерех шая çĕкленĕç, халăха малалла туртĕç.

Çапах та еплерех пурăнатпăр-ха эпир, чăвашсем? Хамăр çине хамăр çаврăнса пăхма пултараятпăр-и?

Эпир, пĕтĕмĕшпе илсен, чухăммăн тенĕ пек пурăнатпăр, кам мĕнле пĕлет, кам пурнăçа мĕнле ăнланать – çавăн пек. Коммунизм идейи, унăн философийĕн витĕмĕ çиелтен çеç тĕс кÿчĕ, пĕтĕмĕшпе илсен шалти туйăм-сисĕме витереймерĕ. Социализмла пурнăç малтанлăха самаях астарчĕ, нумай парас пек хавхалантарчĕ, анчах кĕçех малалла каяссине пÿлме пуçларĕ, чарса лартрĕ, нумай аслă чăн чăвашсене пĕтерсе самаях сиен кÿчĕ. Паянхи куна пирĕн халăх çĕрсе каяс патнех çитрĕ. Ĕçе тирпейсĕр, çиелтен çеç тăвасси, чĕлхе-çăвар латран кайни, вăрласси, улталасси – çаксем пирĕн обществăн уйрăм çитменлĕхĕсем çеç мар, кулленхи пурнăç йĕрки пулса кайрĕç. Çакна ăна суккăр çын та асăрхать, неокоммунистсем çеç асăрхасшăн мар. Этем сывлăшсăр, шывсăр, апатсăр пурăнаймасть. Эпир тата эрехсĕр пурăнаймастпăр. Пирĕн ÿт-пÿре юн вырăнне эрех юхать. Эрехсĕр ĕç тума та, Турра пуç çапма та, канма-савăнма та пĕлместпĕр.

Этемлĕх историйĕ, унăн пуласлăхĕ паянхи кунпах чарăнса лармасть. Апла пулсан пирĕн халăх ăçталла каять? Ăна эпир хальлĕхе пĕлместпĕр. Анчах та çав пуласлăх еннелле туртăнма пулăшакан, хамăр чăваш халăхне пĕтсе ларма паман тытăм – тĕп шăнăр – философи вĕрентĕвĕ – кирлех.

И. ВАСИЛЬЕВ-ТЕНИ.
*«Хыпар», 1992, авăн, 30, 194№.*

## ПĔЧЧЕН ПУТЕКЕ ТУКМАК ТЫТАТЬ

Чăваш тĕнчи паянхи кун абсурдла ситуацисемпе уйрăмах пуян. Чухăнлăх пуянлăхран аванрах пулĕччĕ ку енĕпе. Пирĕн маттур каччăсемпе хĕрсем космосра, спортра, ĕçре, кĕрешÿре пултарулăхĕпе тĕнчене тĕлĕнтереççĕ, темĕн тĕрлĕ пурлăх тума та хăнăхнă. Анчах пурлăхне пĕр патшалăх чĕлхипе тăваççĕ, тепĕр патшалăх чĕлхипе валеçеççĕ. Хучĕ çинче чĕлхисем пĕр тан та – пурнăçра вĕсен функцийĕсем питех те уйрăм. Çак уйрăмлăха пĕтерме чăваша, тĕрĕссипе каласан, никам та пулăшма тăрăшас çук. Чуралăхран пире Турă та, патша та хăтарас çук, хамăрăн хастартарах пулмалла. Ютран килнисем ырă суннă пек курăнасшăн пире, анчах вĕсен пуçĕнче те, ĕçĕнче те карьера тĕллевĕ, чăваш пуянлăхне епле приватизацилес шухăш тулăх. Масс-медире сахал мар сăмах тапратрĕç, анчах парадокс аталансах пырать: чăваш тресчĕсенче, завочĕсенче, фабрикисенче ăшă вырăнсене, пысăк шалу илмелли постсене пире шанса памаççĕ. Çакăн евĕр нонсенс малалла хăрушăрах та пулма пултарĕ: чăваш наци пурлăхне, çав шутра çĕрне те, çурчĕсене те аякран килсе тулнă, чăваш халăхĕн шучĕпе пуйнă хуçасем укçалла приватизацилесе пĕтерĕç. Халăх пуянлăхне хăвăртрах национализацилемелле çакăнтан хăтăлас тесен. Конгресс çак çивĕч проблемăна пăхса тухасса шанас килет.

Пурлăха укçалла валеçме тапратнă чухне чăваш аякран пăхса тăрса юлни аслă шкулсенче те курăнать. Калăпăр, кăçал Чăваш университечĕ вĕренмелли вырăнсене укçалла сутма пуçларĕ. Ку тискер йăла цивилизациллĕ курăнтăр тесе ăна компенсаци, договор, спонсор пулăшăвĕн мелĕсемпе тăватпăр тесе калама тăрăшаççĕ. Ял ачисемшĕн вара компенсаци паракан спонсорсем тупăнасшăн мар, çапла чакать те чăваш шучĕ халăхăн тĕп шкулĕнче. Укçалла пĕрремĕш партие юрфака илсенех тÿрех çакă курăнчĕ: 25 студентран 5-ĕшĕ тутар, 11-ĕшĕ – вырăс, 9-ĕшĕ чăваш. Çапла вара пире виçĕ пайран пĕр пайĕ çеç лекет. Университет пуçлăхĕсем темле тăрăшсан та тăван халăха сыхласа хăварма çăмăл мар: самани укçалла илме хистет. Университета упраса хăварас, аталантарас, чăвашсене аслă пĕлÿ парас тесен ирĕксĕрех çичĕ ютран килнĕ пуянсене вĕрентме тивет. Мăшкăл, анчах та рынок экономикин саманинчи реализм – чăваш «альма-матерĕн» ют ачасене ĕмĕртмелле.

Йышăну комиссийĕн яваплă секретарĕ пулнă май манăн, паллах, экзаменсене чăваш чĕлхипе тытассине йĕркелеме, ял ачисем валли çăмăллăхсем тума май пулнă. Диктантсем чăвашла çырасси халĕ пур факультетра та сарăлса пырать, пĕлтерÿсем, хыпарсем чăвашла парасси йăлана кĕнĕ. Экзаменра акăлчанларан тÿрех чăваш чĕлхине куçарнисем те пулнă. Çапах та чĕлхе саккунĕ аслă шкулсенче абитуриентсене экзаменсене чăвашла тытма ирĕк пани пĕрре те савăнтармасть, мĕншĕн тесен Чăваш патшалăх университетĕнче, педагогика, ял хуçалăх институчĕсенче мĕн пур экзамена чăваш чĕлхипе парасси хăй тĕллĕнех тĕп вырăнта пулмалла. Тăван килте тăван чĕлхепе калаçма ирĕк пани цивилизацие çывхарнине пĕлтереймĕ. Тен, пилĕк ĕмĕр каялла, латин чĕлхи сарăлнă вăхăтра, Германире те нимĕçсене нимĕç чĕлхипе калаçма ирĕк панă пулĕ çав.

Чăваш патшалăх университечĕ уçăлнăранпа кăçал чĕрĕк ĕмĕр çитет. Кашни çул 5000 (кăçал 7000) абитуриент документсем пама пырать, ятарлă анкетăна шифрсемпе çырса тултарать. Нацие кăтартнă чухне вăл, паллă ĕнтĕ, 1-мĕш номер тĕлĕнче «русский» сăмаха курать, унтан 2-мĕш номер хыççăн «украинец» сăмах тĕл пулать. Ку сăмахсемшĕн алфавит ниме те пĕлтермест, вĕсен ăна пăхăнмалла мар. Чи юлашкинчен вара, тĕпĕнче, çамрăксен «чăваш» сăмаха аран-аран шыраса тупаççĕ, ăна 34-мĕш номер тыттарнă, уншăн алфавит – саккун. Çапла вара çĕр пин ытла хĕрпе каччă пĕр нацие хисепленине, тепĕр нацие ним вырăнне хуманнине хăйсен куçĕсемпе курнă, шухăша кайнă, наци туйăмне пĕрисенне хăпартнине, чăвашсенне вара путарнине туйнă. Кăçалхи çул тин чăвашсенчен туртса илнĕ пĕрремĕш номере тавăрса пама май пулчĕ хамăр халăха. Юрĕ, кая юлса туни нихăçан та пулманнинчен усăллăрах пулĕ. Тен çакăн евĕр пĕчĕк утăмсемпех çамрăксене хыт утăмлăн чăвашла калаçса çÿреме хăнăхтарăпăр. Парламент, министерство утăмĕсем вуншар, çĕршер хут вăрăмрах пулассине кĕтетпĕр те, шанатпăр та, ĕмĕтленетпĕр те. Кăлăхах пулмĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен – пĕрремĕш курса 60 процент ытла чăваша вĕренме илнĕ. Ку процентсем халăха та, пуçлăхсене те тивĕçтереймĕç: вĕренме кĕнĕ чăвашсенчен 44 проценчĕ çеç чăваш чĕлхине тăван чĕлхе вырăнне хурать, 55 проценчĕ вара вырăсланнă, тепĕр майлă, нимĕçсен паллă чĕлхеçи В. Гумбольдт евĕр каласан, тăван халăхне пăрахнă. Ку питех те пысăк трагеди, паянхи, хăйĕн демократийĕпе чарăнма пĕлмесĕр ир пуçласа каçчен мухтанакан саманана питлекен факт. Эпир ют халăха чăвашла вĕрентессишĕн ырми-канми тăрăшатпăр, анчах та пирĕн чĕлхери тĕп проблема – чăваша чăвашла вĕрентесси, чăвашла калаçакан чăвашсен шутне пур сферăсенче те ÿстересси. Хальлĕхе тăван чĕлхе засыпушкăра, сысна ферминче, сивĕре çул-йĕре пăртан тасатакансен хушшинче кăна патшаланать. Чĕлхе вылямалли, ячĕшĕн вĕренмелли, тĕпчемелли объект кăна пулса тăни те чуна пăшăрхантарать. Таса та пуян чăваш чĕлхине (нимĕç тĕпчевçисем пирĕн чĕлхене Европăри чи ватă, улшăнмасăр упранса юлнă чĕлхе

вырӑнне хураççӗ) падежсене, консонантизмсене, ротацизмсене вӗреннипе пӗлеймӗн, ӑна урам, пасар, лавкка, радио, телевидени, автобус, ӗç, кил, институт, шкул çеç вӗрентме пултараççӗ. Кашни кун ир пуçласа каçчен пурнӑçра янраман чӗлхе патшалӑх чӗлхи пулас çук. Çак ыйтӑва, йывӑрлӑха шкул йӑтса та тухаймӗ, çӗнтереймӗ те. Пӗрре кӑна каламан пулӗ пире: халӑха вӗрентес ӗçе шкула çеç хупса хуни вырӑнсӑр.

Халӑх чӗлхине вӗренме иллюстрациллӗ тӗслӗхсем кирлех. Урам, хула, ял, колхоз, шыв, фабрика, институт ячӗсене иртен-çӳрен курать, вулать, вӗсемпе интересленет, топонимсем тӑван историе, чӗлхе пуянлӑхне çутатса панипе паллашать. Чӑваша хальлӗхе Ленинградран Петербург, Калининградран Тверь, Свердловскран Екатеринбург тунипе савӑнтараççӗ. Чебоксары вырӑнне Шупашкар, Калининран Нурӑс, Советскинчен Шӑмат, Красноармейскинчен Трак тӑвасси хальлӗхе пуçра та çук, пирӗнтен вӑрланӑ ятсене тавӑрасси пирки сӑмах та тапратмаççӗ. Паян çав ют сӑмахсенчен хӑтӑлмасан ыран пире çапла та каласа хурӗç: «Ку çӗр чӑвашӑн мар, ячӗсем пӗтӗмпех вырӑсла вӗт». Паян Нурӑссем, Сӗнтӗрвӑррисем, Тӑвайсем, Çӗрпӳсем, Шуршусем чӗлхерен тухса ӳксен, ыран Кӑканар, Вӑрмар, Вӑрнар, Йӑранар та пӗтеççӗ. (Кашни ячӗ епле янӑрать, этем чӗлхин çул-йӗрне çутатса парать).

Миçе чӑваш паспорчӗ çине Поганкинора çуралнӑ тесе çырнине шутласа та тупас çук. (Пуканкасси – вырӑсла «Тронная улица» та пулма пултарнӑ, нимӗçсен те «гассе» пӗчӗк урама пӗлтерет). Хӑçанччен эпир чӑваша «Олух Шумшевашинче» усратпӑр-ши? (Улӑх Шӗмшеше Луговые Шумшеваши теме пулнӑ). Пӗтӗм тӗнчери чӗлхере тӗп саккун пур: топонимие, çын ячӗсене чӗлхерен чӗлхене куçармаççӗ. Ку йӗрке каллех чӑваш çӗрӗнче курӑнмасть. Йӗркесӗрлӗхӗ вара тӑп-тулли. Конгресс тапратмасан кам тапратӗ çак ыйтӑва?

Кун хыççӑн кун, çул хыççӑн çул иртет, çапла çаврӑнса, пӑтранса тӑнӑ саманара сисмерӗмӗр те – халӑх улшӑнма та пуçларӗ. Акӑ пӗр абитуриент Чӑваш университечӗн коридорӗпе роликла конькипе ярӑнса экзамена килет, тепӗр доцент йышӑну комиссийӗн тӗп пӳлӗмне пӑру пысӑкӑш йыттине çавӑтса кӗчӗ, çавӑнтах тата паллӑ бизнесменӑн хӗрӗ «2» паллӑ илнипе вӗренме кӗреймен те – темӗн те пӗр каласа вӑрçать ашшӗ: «Эсир пурнӑçран тӑрса юлнӑ! Эпӗ мӗн чухлӗ ыйтатӑр – çавӑн чухлӗ тӳлеме пултаратӑп. Ман ӗç – тӳлесси, сирӗн ӗç вӗрентесси!» Ӑнланаймасӑрах уйрӑлатпӑр вара пӗр-пӗринчен. Цивилизаторсем, приватизаторсем темле шая та антарса лартма пултараççӗ, хӑйсене вара халӑха тӗнче культурине çитме пулӑшакансем пек тытаççӗ, йӑлйӑл кулса çепӗç калаçаççӗ. Турӑ ахальтен мар çапла хушнӑ пулӗ: «Суя пророксенчен сыхланӑр: вӗсем сирӗн пата сурӑх тирӗ тӑхӑнса пыраççӗ, ӑшӗнче хӑйсем – тискер кашкӑрсем».

Нацие çӑлма, ирӗклӗхе кӑларма пӗр рецепт кӑна сӗнес килет: каялла, ӗлӗкхи чӑвашсен йӑлисем патнелле, Иван Яковлев вӗрентӗвӗ еннелле, халӑх педагогики хыççӑн кайса пӗрлешмесен пире салатса та ярӗç, вӑйӗ те хавшакланӗ чӑвашӑн. Халӑха юхӑмсем, партисем тӑрӑх центр хыççӑн пайласан эпир пӗрлешеймӗпӗр. Мускавалла-Хусаналла туртӑнни те чӑваша пулӑшас çук: утмалла хамӑр çулпах. «Ӗмӗр пӗрле, ай пулар-и», – тесе юрла-юрла вӗрентнӗ чӑваша ваттисем, çавӑнпа та пулӗ пире, паян пурӑнакансене, вӗрентсе хӑварнӑ: «Нумай пӗтӗ, сахал çитӗ, пӗрле пурӑннине мӗн çитӗ». Чӑваш чӑваша кашни утӑмра хисеплесен, хӳтӗлесен, пулӑшса пырсан, пӗр-пӗринпе туслӑ пулсан наци вӑйланӗ. Исламизаци, христианизаци, чухӑнлӑх, çӗрсӗрлӗх инкекӗсем чӑваша салатнӑ, анчах та таçти тӗнчене çитсен те чӑвашсем сахаллӑн та пулин пӗрле пурӑннӑ, халӑхран иртме те, юлма та шутламан. Тӑван халӑхран уйрӑлни хӑрушӑ пулнине сиснӗ ваттисем, çавӑнпа таккаса, хӑратса вӗрентнӗ: «Пӗччен путеке тукмак тытать». Путек пулар мар.

Чӗлхӳпе калаçма ан васка, ӗçне тума васка. Ӗçченлӗх – ваттисен пехилӗ, çамрӑксен çӑлӑнӑçӗ. Чӑваша ӗçчен пулнӑшӑн таçтан та килсе мухтаççӗ, хавхалантараççӗ, ӗç геройӗсем пулма чӗнеççӗ. Ӗçчен пулмаллах, анчах чурара юлар мар, наянсене, ютран пуйма килекенсене ертсе пыма çеç мар, хура ӗçе те хутшӑнма ирӗк парар: çынна мулшӑн туман, мула çыншӑн тунӑ. Пӗтӗм кахал кантура пухӑнсан, пӗтӗм пуян кӗрекене пуçтарӑнсан чӑваш ӗмӗрлӗхех чурара пулӗ, паян кун ӗçсӗр те тӑратса хӑварӗç ӑна тӑван çӗрӗ çинчех, хӑйӗн килӗнчех.

Чӑваш çӗрӗ пуян. Йӗри-тавра пӑхатӑн та мӗн кӑна курмастӑн: ӑçтан кӑна килмеççӗ пулӗ чӑваш çӗрне чавма, хуçаланма. Халӗ вӑйпах тӑрӑшаççӗ: чӑваш çӗрӗ айне хими хӗç-пӑшалне чиксе хурсан питех те усӑллӑ имӗш. Пире суверенитета чӑтаймастӑр тесе те хӑратаççӗ, сирӗн çӗр чухӑн тесе те ӗнентерме пикенеççӗ. Çук, чӑваш çӗрӗ çӗрме пуян, çавӑнпа ун çумне пурте çыпçӑнаççӗ, никам пӑрахса кайма шутламасть. Пур тесе мухтанар мар, çук тесе те хурланар мар. Чӑваш çурта лартнипех çурт тума хӑнӑхман, вӑл хӑй аллипе, хӑй тарне юхтарса тунӑ тупрапа пурӑнать. Пӗлтӗр чӑваш экспорчӗ импорта 3:1 шутпа çӗнтерчӗ пулсан кӑçал шучӗ ӳснех пулӗ. Пирӗн те ваттисене хывасчӗ те – вӗсене тивӗçлӗ пулса, пин-пин çул пухнӑ пурлӑха çичӗ юта салатса партарас марччӗ: пуçтарма – çулталӑк, салатма – çур талӑк. Паянхи чӑвашсем Атӑл урлӑ пӗрре кӑна каçман-тӑр, аллӑ тӗслӗ ӑс пухса çитернӗ-тӗр.

Владимир ИВАНОВ, Конгресс делегачӗ,
Чӑваш патшалӑх университечӗн ют чӗлхесен кафедрин ертӳçи.
*«Хыпар», 1992, юпа, 6, 199 №.*

## «ХАЛӐХ ӐС-ПУРЛӐХНЕ ПӖТМЕ ПАРАС МАРЧЧӖ»

*Чӑваш наци конгресне хутшӑнма тӗрлӗ регионсенчен делегатсем пухӑнма тытӑнчӗç. Красноярск крайӗнчен килнӗ хӑнасен пӗр ушкӑнӗ «Хыпар» хаçат редакцийӗнче пулчӗ.*

**В.И. Мешков, Раççей халӑх художникӗ, Чӑваш Республикин тава тив ӗçлӗ художникӗ, Красноярск крайӗнчи Чӑваш культура обществин председателӗ:**

– Эпир Чӑваш наци конгресне крайра пурӑнакан 27 пин чӑваш шухӑшне палӑртма килтӗмӗр. Ун ӗçне активлӑ хутшӑнасшӑн, пирӗн тӑрӑхри чӑвашсемпе республика территорийӗнче пурӑнакан чӑвашсен çывӑхӗнче тачӑрах йӗркелесе ярасшӑн. Чӑваш ялӗсем пирӗн патра чылай. Вӗсем те хӑйсен культурине упраса хӑварасшӑн, анчах майсем сахал. Акӑ кӑçал Казанка ялӗнче пӗрле пухӑнса уяв ирттертӗмӗр. Чӑваш тумӗсем çӗлерӗмӗр. Ытти халӑх çыннисем те хутшӑнчӗç унта.

**– Чӑваш ялӗсем чылай терӗр. Анчах чӗлхе, культура ыйтӑвӗ, ӑна упраса хӑварасси мӗнлерех?**

– Чӗлхе çухални наци çухалнипе пӗрех. Халӗччен шкулсенче вырӑсла çеç вӗрентнӗ. Малашне ятарлӑ кружоксем те пулин йӗркелесшӗн. Шанчӑк – çамрӑксенче. Вӗсем ашшӗ-амӑшӗн чӗлхине манас темеççӗ пулсан, чӑваш халӑхӗн культурине упрас теççӗ пулсан – вӗренччӗр. Çак ӗçе чӑвашла лайӑх пӗлекен ватӑсене те явӑçтарасшӑн.

**– Чӑвашсене чӑмӑртама çӑмӑл мар пулӗ. Çамрӑксем пирӗн патра та тӑван чӗлхинчен писеççӗ-çке.**

– Хальлӗхе пирӗн çав-çавах чӑвашлӑх туйӑмӗ пӗтмен-ха. Конгресра пирӗн крайри çамрӑксене Шупашкара вӗренме ярасси çинчен те сӑмах тапратасшӑн. Вӗсем вӗренсе тухнӑ хыççӑн пирӗн патах таврӑнччӑр, пирӗн ӗçе малалла туса пыччӑр.

**– Владимир Ильич, чӑвашсемпе ытти халӑх çыннисен хутшӑнӑвӗсем еплерех?**

– Лайӑх, йӗркеллӗ. Пирӗн регионта çӗр ытла халӑх представителӗ пурӑнать. Пӗр-пӗринпе хирӗçнине илтмен. Чӑвашсем пурӑнакан вырӑнсенче те тӗрлӗ наци çыннисем пур. Пӗрле ӗçлеççӗ, савӑнаççӗ, çемьечӗ чӑмӑртаççӗ. Çав çыхӑну нумай çул хушши çирӗпленсе пынӑ, ӑна аркатма юрамасть.

Паллах, йывăрлăхĕсем те пур. Ялсем пĕтеççĕ. Чăваш ялĕсем çеç мар. Эпĕ чăвашсене пирĕн тăрăха пырса курма, килĕшет пулсан, унта пурăнма пымашкăн чĕнесшĕн. Ун чухне культура ыйтăвĕсене те вăйлăрах çĕклеме пулĕччĕ. Хальлĕхе вара эпир хамăр патра чăваш юррисене те илтейместпĕр. Çавăнпа та конгреса килнĕ май Шупашкартан магнитофон лентисем çине те пулин чăваш юррисене çырса каясшăн. Ытти халăхсен юрри-кĕвви янăрать-çке. Эпир мĕнрен кая?

**– Конгресс ыран уçăлать. Çак вăхăтра тата мĕнле ĕçсем туса иртересшĕн?**

– Ĕç нумай, шухăшĕ те туллиех. Ыран Шупашкар районĕнчи Ишеке çитесшĕн. Эпĕ хам Çатра Марки ялĕнче çуралнă. Унта та çитмелле. Ишекре музейре пуласшăн. Тата пирĕн делегаци Конгресс ячĕпе Красноярск крайĕнчен парне илсе килчĕ – Çĕпĕр кедрĕн хунавĕсем. Ăна Ишекре, музей çывăхĕнче, лартса хăварасшăн – асăнмалăх.

Владимир САРИЛОВ калаçнă.
*«Хыпар», 7.10.1992, 200 №.*

## ДОЛЖЕН СТАТЬ ПОВОРОТНЫМ ПУНКТОМ

Президиум Верховного Совета нашей республики, принимая решение о созыве Чувашского национального конгресса, постановил, что он проводится «с целью определения путей дальнейшего национального возрождения и развития чувашского народа». На заре эпохи Возрождения в Европе, около 800 лет назад, великий Данте, автор «Божественной комедии», писал:

*Залит проклятым ядом целый свет,*
*Молчит, объятый страхом, люд смиренный,*
*Но ты, любви огонь, небесный свет,*
*Вели восстать безвинно убиенным,*
*Подъемли Правду, без которой нет*
*И быть не может мира во вселенной.*

Рухнула тоталитарная система, доведшая страну под флагом классовой ненависти до развала. Ослаб страх перед нею в сердцах людей. Создались условия для поиска народом правды во всем.

Цель этой статьи – высказать мысли, которые, на мой взгляд, правдивы, и на их основе попытаться определить необходимые действия для возрождения чувашского народа, соответствующие всей грозности реального положения дел в этой области...

Сейчас происходит массовый отход чувашей от родного языка. Причина ясна: он хотя и считается в Чувашской Республике одним из государственных языков, но на деле ни для чего не нужен. По последней переписи пятая часть чувашей не знает родного языка. И эта тенденция нарастает, так как большинство чувашей сейчас рождается в городах.

Для меня несомненно: еще лет пять такой языковой политики – и участь чувашского языка, единственного живого языка гуннско-хазарско-булгарской группы, будет предрешена. А потом наступит все более ускоряющаяся его агония.

Сегодня и надмогильные памятники оформляются только на русском. В нашей истории подобное уже было – в 12–15 веках. Тогда болгаро-чуваши, исповедовавшие ислам, постепенно переходили на кыпчакский (татарский) язык. Поэтому марийцы казанских татар и сейчас называют суасами (т. е. чувашами). По мере отатаривания чувашские тексты на основе арабской графики на каменных надгробиях заменялись кыпчакскими текстами.

Основная причина национального нигилизма, так сильно поразившего чувашей, – незнание своей истории. В.О. Ключевский, историк и автор «Курсов русской истории», писал: «Национальная гордость – культурный стимул, без которого не может обойтись человечество. А что питает национальную гордость? История, и только история, и еще раз история». В школах мы изучали историю любого народа, только не родного. И так делалось специально, чтобы готовить манкуртов, людей без памяти, которыми Системе легче было манипулировать, которых легче русифицировать.

Как и другие народы, мы вправе гордиться своей историей. Гунны, предки чувашей, в пятом веке в Северном Причерноморье разгромили государство остготов (восточных германцев), освободив покоренных ими восточных славян. Кирилл и Мефодий, сыны болгарского народа, образовавшегося в результате ассимиляции славянами завоевавших их аспаруховых болгар, дали письменность, которой мы и поныне пользуемся. Близкие чувашам степные племена, назвавшие свой основной город Черкассы (по-чувашски Çаркасси, т.е. Войсковое), стали опорой киевских князей. По Карамзину именно эти уже обрусевшие племена вскоре после Батыева нашествия выделили из своей среды впервые упоминаемых казаков. Смысл этого слова хорошо объясняется чувашским языком.

Волжские болгары, предки чувашей, наголову разбили войска знаменитых полководцев Чингисхана Субедея и Джебе, разгромивших в 1212 году русских князей на реке Калке, и 24 года сдерживали (до 1223 года) наступление татаро-монгол по реке Яику (Урал).

Переход чувашей и горных марийцев на сторону русских предрешил судьбу Казанского ханства. Последующие двести лет – это почти сплошная цепь восстаний за освобождение от новых угнетателей. В основном для их подавления служили семь крепостей, построенные главным образом по окраинам земель правобережных чувашей: Алатырь, Курмыш, Ядрин, Козьмодемьянск, Чебоксары, Цивильск, Свияжск.

Мощнейшее влияние болгаро-чувашской культуры испытали все народы Поволжья и в сфере материальной культуры, и языковой. Распространеннейшее слово «хозяин» могло войти в русский язык только через чувашский «хуçа» и означает хозяина. (Через другие тюркские языки он бы вошел в другой форме).

Позади нас, надо думать, «Золотого века» не было. Но представлять жизнь чувашей лишь через трахомную избу в музее исторически тоже неверно. Сильные, трудолюбивые люди жили богаче. Но община поддерживала и слабых своих членов. Нынешний «чухăн» (бедняк) прежде обозначал середняка (чухăн, значит в меру, как раз). Лишь после кровавого подавления пугачевского восстания и запрещения чувашам заниматься металлообработкой, многими ремеслами, с началом насильственной христианизации, при которой множество народа приняло мусульманство и отатарилось, – чувашский народ выдохся в борьбе за освобождение и начался его упадок. А служилая знать в основном обрусела.

Н.И. Ашмарин писал в начале века, что чуваши сейчас слабо разбираются в драгоценных камнях, так как немногие их имеют. Но тем не менее до революции большинство чувашских женщин имели ценнейшие головные, нашейные и нагрудные украшения, составленные из чудесных вышивок и серебряных монет, передававшихся по наследству. Как писал В.К. Магницкий в 1881 году, одно только хошпу (головной убор замужней женщины) стоил 35 рублей серебром. Столько стоили примерно пять лошадей. После революции под прессом голода, реквизиций и налогов все это богатство исчезло, и сейчас лишь немногие имеют такие украшения.

Великий подъем, вызванный тремя революциями, в тридцатых годах завершился избиением национальных кадров и началом маргинилизации (отрыв от родных корней) народа, лишенного и земли, и возможности пользоваться родным языком во всех сферах жизни.

Мне представляется, что для сохранения языка, культуры, обычаев чувашского народа из множества вопросов необходимо срочно решить следующие. Принять закон о том, чтобы по окончании срока исполнения существующего Закона о языках (он был принят на 10 лет) оставить единственным государственным языком в республике чувашский, а русский будет языком межнационального общения. Только в этом случае произойдет необходимый психологический перелом. В народе воскреснет вера в то, «что мы были, есть и будем», прекратится процесс обучения дедушек и бабушек русскому языку приехавшими в деревни на каникулы городскими внуками. Без такого закона чувашский язык обречен. Только его полнокровное функционирование во всех сферах жизни способно обеспечить ему будущность. А русский мы все знаем и будем знать, ибо живем не за хребтом Кавказа, а в середине России.

Что касается школы, в ней с начальных классов важнейшим предметом должна быть именно история чувашского народа. А суверенитет республики, которого сейчас недостает даже для решения формы приватизации какого-нибудь ларька в Чебоксарах, должен быть максимально использован для защиты прав чувашей, проживающих за пределами республики.

Очень важно также избрание Президента республики. Народ должен знать одного человека, с которого можно спрашивать, особенно в нынешней ситуации, и дать ему необходимые права.

Я вполне понимаю, что в настоящее время весьма непросто (но возможно) обеспечить принятие решений по этим вопросам. Главным образом по двум причинам. **Первое** – национальная творческая интеллигенция разделилась в основном на две группы, которые борются между собой, хотя у них нет принципиальных различий, а только личностные моменты. Такой раскол укрепляет позиции противников национального возрождения чувашей. Если и на Конгресс будет перенесен дух раскола, то значимость его резко уменьшится.

**Второе** – надо, чтобы русское население в массе своей способствовало возрождению чувашей. С татарами вопросов нет, они знают чувашский, как и чуваши в Татарстане – татарский. Понятно, для русских не все тут просто. Но ведь чуваши целиком выложились ради величия России, отдав этому в течение столетий все жизненные силы и наиболее активную часть народа, которая обрусела.

Н.И. Ашмарин, предприниматели братья Таланцевы и врач К. Волков из Ядрина, артист В. Родионов и другие русские люди сделали многое для национального подъема чувашей. Хочется верить, что эта тенденция будет развиваться и впредь. И сегодня можно назвать многих российских деятелей, помогающих сохранению национальных культур. Так, известный писатель В. Белов пишет: «Меня, русского человека, отнюдь не радует, допустим, перспектива медленного, постепенного исчезновения одного народа, его полного смешения с другими народами. Какая тоска пришла бы на Землю, какая скука нахлынула бы, если бы остался всего один язык, похожий на эсперанто!»

У нас в республике есть и свои национальные нигилисты, вопрошающие: «Что мы, исключительная нация? Что, у нас особая культура?» Да, мы действительно «исключительная» нация, которая вместо того, чтобы дать своим юношам и девушкам необходимый приоритет для поступления в вузы (в том числе и для подготовки кадров для чувашского населения за пределами республики), вынуждает их убирать навоз на фермах многих областей, вплоть до Санкт-Петербурга. А приоритет у нас – до сих пор, во всяком случае – давали не своей молодежи.

Не хлебом единым жив человек... Нет иных путей для человечества в духовной сфере, чем сохранение всего многообразия национальных культур, как и многообразия растительного и животного мира в природной сфере.

В нынешний переломный момент истории решение главнейших вопросов зависит от активности, позиции людей. И наш национальный Конгресс, основывая свои решения на правде истории, правде жизни, я думаю, способен стать поворотным моментом в деле возрождения чувашского народа.

А. АЙДАК, председатель колхоза «Ленинская искра» Ядринского района.
*«Советская Чувашия», 7.10.1992, №200.*

## ИСТОЩАЕТ НАЦИЮ НИГИЛИЗМ

Известно, что чужеземные захватчики всегда стремились к ликвидации элиты покоренных народов. Монголо-татары перебили основную часть правящей прослойки и стародавней интеллигенции болгаро-чувашей. И в Казанском ханстве, образовавшемся на развалинах Золотой орды, чуваши испытывали тяжелейший национальный гнет. Из чувашей были лишь единицы окружных князей (пӳ), несколько десятков сотенных и десятных князьков (çĕрпӳ, вунпӳ), тарханы. На чувашской земле происходили непрерывные разорительные военные действия между казанскими и московскими войсками. В России при Петре I ликвидировали сословие чувашских сотенных и десятных князьков, тарханов и служилых чувашей, переведя их в разряд государственных крестьян. За 700 лет пребывания под иноземным гнетом у чувашей сложились своеобразные психология и национальный характер, который ныне стали называть «чувашским комплексом»: чуваши считали, что управлять ими, господствовать над ними должны обязательно представители других наций (татары, русские и др.), что из них не должны быть представители властей и должностных лиц, образованных, «ученых» людей. Выдвижение кого-то для них было совершенно непривычно, неестествено, неприемлемо. Просветитель И.Я. Яковлев в чувашской версии своего завещания писал: «Среди чуваш нередко случаются непристойные дела. Это я наблюдал не раз. Так, если кто-нибудь начинает выходить вперед, другие ему подставляют ногу, закрывают дорогу. Тогда его добрая мечта обрывается, а препятствующие ему сами остаются совершенно чахлыми». В то же время отдельные представители чувашей, получившие образование, стремились не тянуть за собой других, а препятствовать им выбиться в люди.

За 700 лет иноземного угнетения у значительной части чувашей распространилось чувство национального нигилизма, неверие в будущность нации, пренебрежительное отношение к своему языку и культуре, к своему соплеменнику. Они привыкли больше уважать людей другой нации, чем своих сородичей. Даже просветитель И.Я. Яковлев полагал, что со временем чуваши должны слиться с русским народом. Но он считал, что прежде они должны догнать русских по уровню духовного, культурного и экономического развития, опираясь на родной язык.

В последние десятилетия официальная доктрина сближения и последующего слияния наций также приводили к распространению среди чувашей национального нигилизма.

Отказ значительных групп и слоев нации от родного языка ведет к деградации нации. За последние десятилетия чуваши, проживающие в городах и в сельской местности среди иноязычного населения, забывают родной язык. Уже второе поколение городских чувашей не владеет родным языком. По данным переписи населения 1989 года, только 76,5 процента чувашей на территории бывшего СССР владеют родным языком, то есть почти четверть чувашей потеряли основной национальный признак. В самой Чувашской Республике 15 процентов чувашей не знают родного языка. Среди чувашей, проживающих за пределами республики, отказавшихся от родного языка еще больше: в разных республиках, краях и областях их от 21 до 60 процентов.

Меньше таких в тех республиках и областях, где проживает более 100 тысяч чувашей, в Татарстане –12,1 процента, Ульяновской области – 16,1, Башкортостане – 17,3, Самарской области – 20,5 процента. Языковая деградация охватила главным образом молодежь. *В 1992 году, к примеру, на 1 курс Чувашского государственного университета зачислены студентами 765 чувашей, но из них только 44,1 процента владеет родным языком.*

Значительная часть чувашей, проживающих за пределами нашей республики, не умеет не только писать, но и читать по-чувашски. В нашей республике преобладающая часть чувашей, умеющих говорить на родном языке, не может правильно писать по-чувашски. Многие выпускники средних школ не умеют писать на родном языке. Если в 20–30-х годах функции родного языка были довольно широки, охватывали и общественно-государственную область, то за последнее десятилетие они сузились до предела. *Родной язык используется лишь в начальном обучении, художественной литературе, театре, периодической печати. Сократилось издание книг. Чувашский язык в основном стал сельским, семейно-бытовым. Хотя в республике чувашский язык, наряду с русским, объявлен государственным, но делопроизводство, судопроизводство осуществляются только на русском.* Министерства, ведомства, муниципалитеты, хозяйственные и общественные органы пишут бумаги только на русском языке. В чувашских школах преподавание с 5-го класса ведется на русском. Хотя разрешено параллельно с русским использовать чувашский язык в преподавании гуманитарных дисциплин в 5–8-м классах, но это фактически редко где практикуется. За пределами республики после 1960-х годов не ведется даже преподавание чувашского языка и литературы.

Пренебрежительное отношение самой нации к своему родному языку ведет к её постепенному исчезновению, отрицательно сказывается на её интеллектуальном уровне и тормозит развитие национальной культуры, художественной литературы и искусства, сокращая резерв пополнения их талантами. В настоящее время более 90 процентов чувашских композиторов в возрасте старше 60 лет. Почти такой же состав писателей, среди них нет молодых талантливых поэтов и прозаиков. В числе профессиональных музыкантов и певцов республики чуваши составляют меньшинство.

Почти половина городского населения Чувашии – чуваши, но у нас нет национальной городской культуры. Ее надо создать. Необходимо расширить преподавание на чувашском языке. В чувашских средних школах следует ввести выпускные экзамены по чувашскому языку и литературе, а на гуманитарных, физико-математическом, медицинском факультетах Чувашского университета, в педагогическом и сельскохозяйственном институтах республики ввести вступительные экзамены по чувашскому языку. Государственную деятельность и судопроизводство в республике желательно преимущественно вести на чувашском. Чувашские районы и сельские советы за пределами республики должны использовать в качестве государственного, наряду с русским, и чувашский язык. Это право должно быть узаконено. Чувашия должна усилить помощь соплеменникам, проживающим за пределами республики, в функционировании родного языка, изучении его в школах, развитии национальной культуры, культурном обслуживании. Необходимо в несколько раз увеличить выпуск книг для диаспоры.

*Многие нации являются разносторонне, гармонически развитой общностью людей. Моя нация такой еще не стала.* Очень важны вопросы о трудовом и интеллектуальном потенциалах, социально-профессиональном составе. Социальный состав нации должен представлять собой оптимальное пропорциональное сочетание крестьян, рабочих и интеллигенции. У нас вызывает беспокойство низкий процент лиц с высшим образованием среди чувашей. По данным 1979 года, на одну тысячу человек в возрасте старше 10 лет высшее образование имели в Российской Федерации 71 человек, а в Чувашии среди русских – 74 человека, среди чувашей – 34 человека. Особенно мало среди чувашей инженерно-технических работников. В республике чуваши составляют около 68 процентов, а в промышленности, строительстве, связи и на транспорте инженерно-технические работники чувашской национальности не превышают 15 процентов. Низка доля чувашей среди врачей, работников искусства. За пределами республики среди чувашей мало и учителей, специалистов сельского хозяйства. Справедливо считать, что состав студентов вузов должен быть пропорционален социальному и национальному составу населения регионов. Но у нас это не так. По переписи 1989 года в Чувашской Республике городское население составляло 58 процентов, сельское – 42; рабочие – 52 процента, колхозники и труженики совхозов – 24, служащие– 24; по национальности: чуваши 67,7, русские – 26,7, татары – 2,7, мордва – 1,4, другие национальности – 1,5 процента. А каков состав студентов в вузах? Например, из 1421 студента, принятого на дневную форму обучения Чувашского госуниверситета в 1990 году, были: из городов 69,9 проц., в том числе из Чебоксар – 53 процента, рабочих и детей рабочих – 38,6, колхозников и детей колхозников – 9,7, служащих и детей служащих – 51,6 процента, чувашей – 54,5 процента, русских – 40,8, других национальностей – 4,7 процента. Особенно редко обучаются в вузах сыновья и дочери чувашской диаспоры. Следует переориентировать вузы Чувашии на подготовку кадров из чувашей и для чувашей всей России. Это относится особенно к подготовке инженерно-технических, педагогических и медицинских кадров.

Нация, как общность, не может нормально существовать без стремления быть порядочной, достойной своего имени. В прошлом чуваши отличались исключительным трудолюбием и высочайшей нравственностью. В любом чувашском районе на 20–30 тысяч населения можно было найти не более 4–5 пьяниц, поскольку чуваши водку почти не употребляли, довольствовались домашним пивом. Во всем районе в течение года разводов случалось не более 2–3, редко можно было видеть единичные случаи, когда девушка становилась матерью. Не было случаев хулиганства ни в сельской местности, ни в городе. В деревнях дома и клети не знали замков. Краж имущества почти не было. Из поколения в поколение чуваши учили друг друга: «Чăваш ятне ан çĕрт – Не срами имени чуваша». Быть порядочным в семье народов – это здоровое стремление.

Положение изменилось в послевоенные десятилетия. Возрастало число пьяниц среди мужчин, появились пьяницы-женщины. Многие впадали в алкоголизм. Из статистических материалов известно, что алкоголизмом и алкогольным психозом на 100000 человек населения в 1985 году в СССР страдало 217 человек, а в Чувашской АССР – 421,5 человека. Алкоголизм снижает трудоспособность человека до самого низкого уровня. Увеличилось число лиц, отклоняющихся от производительного труда. Умножились случаи хулиганства, преступности. Республика получила «всесоюзную славу» групповыми драками молодежи. Некоторая часть населения потеряла нравственный облик. Физическое и нравственное оздоровление определенной части нации стало насущной задачей.

**В целях решения труднейших и сложнейших проблем возрождения чувашской нации, особенно спасения чувашской диаспоры, целесообразно провозгласить и организовать культурно-национальную**

**автономию чувашей Поволжья, Приуралья и Сибири, включив в нее как наиболее активную силу и Чувашскую Республику, сохраняющую суверенную государственность. В других республиках, краях и областях должны быть официально провозглашены чувашские районы и сельсоветы, в которых государственным языком, наряду с русским, должен быть и чувашский.** Необходимо создать «Фонд поддержки и спасения чувашской диаспоры», куда должны поступать отчисления государственного бюджета, предприятий, колхозов, совхозов, учреждений и частных лиц. Следует избрать Совет культурно-национальной автономии чувашей Поволжья, Приуралья и Сибири. Желательно перевести Чувашское книжное издательство, республиканские газеты и журналы, театры, филармонию и другие учреждения культуры на обслуживание чувашской культурно-национальной автономии.

Я просил бы Чувашский национальный Конгресс рассмотреть поставленные в данной статье проблемы, высказанные предложения и принять по ним решения.

Василий ДИМИТРИЕВ.
*«Советская Чувашия», 8.10.1992.*

## ВĂРАНАР!

Нумай сăмах пуплеççĕ чăвашсен Аслă пухăвĕ пирки. Нумай ĕç тăвас шухăш пулĕ ертўçĕсен. Темшĕн ман пуçа вара татах та киревсĕр шухăшсем кĕреççĕ. Мĕншĕн мана ку пуху самана юхăмне тытса пынăн туйăнать. «Кўршĕсенчен мĕншĕн кая эпир?» тени мар-и? Чăнах та, эпир тĕплĕн хатĕрлерĕмĕр-и-ха? Укçа-тенкĕсĕр пуçне тĕп тĕллев тупнă-и?

Хаçатсенче тытăнсах кĕрешмелле тесе кăшкăраççĕ, кампа – мишерсемпе-и? Вĕсем чăваша ку таранччен хисеплемен. Аслă пуху хыççăн та хисеплесшĕнех пулмĕç. Анчах та эпир хамăра хамăр хисеплеттерме тивĕçлĕ. Çак Пухăва ахальтен Аслă тесе каламаççĕ пулĕ. Аслă пухура пирĕн хамăр çинчен пĕтĕм тĕнчене пĕлтермелле. Пире мĕнле шăпа кĕтнине. Паянах нумай ыйтăва татса памасассăн эпир халăх пек, наци пек çĕр чăмăрĕ çинчен çухалма пултарнине. Анчах та çак туйăма эпир хамăр туйса илейместпĕр.

Пире çак çĕр çинче çухалса путланма иртерех-ха. Чим-ха, чăваш, кăштах пурăн. Хăвăн ĕлĕкхи пурнăçна, ĕмĕр-ĕмĕр пухнă культурăна, ўнерне тĕпчемесĕр, тĕплĕн пĕлмесĕр çухаласшăн-им? Ăна-кăна тишкерсессĕн, несĕлсен çул-йĕрне шыраса тупсассăн эсĕ, чăваш, хăвна ху та хисеплеме пултарăн, чăваш ăс-тăнне хаклама пуçăнĕç. Вара ун чухне санăн ачу-пăчу тăван чĕлхерен тармĕ. Унăн çепĕç те ытарама çук шăнкăравлă сассипе мухтанса савăнĕç. Ку таранччен икĕ вут хушшинче çунса пĕтмен халăх пĕтме пултараймасть.

Пирĕн никама парăнманлăх (хăрамастăп çак сăмахран), никама пăхăнмалăх Ялавпа Герб çинче уççăн курăнаççĕ. Нихăш республикăра та пирĕнни пек символ – аваллăхпа цивилизаци пĕрлешни – çук. Ку пирĕн харсăр та вăйлă утăм, мĕскĕнлĕхе хыçала хăварни. Çакăн пек утăмсемпе çеç эпир чăвашпа чăвашлăха упраса хăварайăпăр. Аслă Пухура пирĕн символсем пирвайхи ретре пуласса шанатăп. Вĕсемпе эпир çĕнĕ ĕçсем тума хавхаланăпăр.

Пĕтĕм тĕнчери чăвашсем, сирĕн аллăрта çеç сирĕн телейĕр! Чăваш телейлĕ пулма çуралнă, унăн ĕçчен те паттăр аллисем çĕнĕ пурнăç кермене хăпартма хатĕр. Пирĕн ĕçченлĕхпе сăпайлăх ытти халăхсемшĕн тĕслĕх пулса тăмаллах. Чăваш сассине мĕн пур çĕр кĕтесĕнче илтессе шанатăп.

И. АЛЕКСАНДРОВ.
*«Хыпар», 8.10.1992.*

## ЧУВАШСКИЙ НАЦИОНАЛЬНЫЙ КОНГРЕСС: ВСЕ ГОТОВО К РАБОТЕ

*Наверное, не будет преувеличением утверждение о том, что сегодня республика живет ожиданием открытия Чувашского национального конгресса, который пройдет в Чебоксарах. Считанные дни остаются до начала его работы, многие с тревогой задаются вопросом: не произойдет ли нечто сходное с той ситуацией, когда раскололся ЧОКЦ на два лагеря? Избежим ли вселенского позора? Есть ли резон в этом – Конгресс покажет. А теперь же поговорим о том, как Чебоксары готовятся к встрече гостей. Об этом рассказывает заведующий сектором межнациональных отношений секретариата Верховного Совета Чувашии А.К. Кириллов. Он же член оргкомитета конгресса.*

– Оргкомитетом и рабочей группой проведена очень большая работа. Все делегации извещены своевременно. Приглашения разосланы во все республики, края и области России и страны СНГ. Должны приехать гости из ближнего и дальнего зарубежья. Кстати, подобных приглашений – более двадцати. На днях позвонил из Москвы один из представителей бизнеса Америки, Падюков Сергей, наш земляк. Обещал непременно принять участие в работе Конгресса.

**– Сколько человек примет участие в работе первого всечувашского форума?**

– Вместе с приглашенными число делегатов достигнет более тысячи человек. Разумеется, решены вопросы обеспечения транспортом, номерами в гостиницах, питанием. Составлена культурно-развлекательная программа на все дни работы Конгресса. Все театры и культурные заведения города будут работать по обслуживанию делегатов. Это 7, 8, 9 и 10 октября.

**– Лично вы какие надежды возлагаете на Конгресс?**

– Очень большие. Он должен ответить на многие вопросы, волнующие чувашское население, а также чувашские диаспоры. Речь идет, в первую очередь, о консолидации нашей нации, возрождении чувашской культуры, языка, традиций и т. д. Естественно, пойдет разговор и о том, как республика будет помогать диаспорам. В первую очередь, в создании культурных центров на территориях, где проживают чуваши. Верховный Совет Российской Федерации также готовит пакет документов, касающихся образования национальных районов, сельских и поселковых Советов.

**– В какую сумму обойдется проведение Конгресса? Впрочем, я понимаю, что дело не в деньгах, но тем не менее...**

– Многие предприятия и организации перечислили значительные суммы в фонд проведения Конгресса. Это где-то около полутора миллионов рублей. Министерство финансов республики перечислило четыреста тысяч рублей. Госкомнац России также выделил примерно такую же сумму. Думаю, что будут еще поступления от организаций республики. Ведь дело-то общее. Основная сумма, которая потребуется на проведение Конгресса, будет исчисляться тремя-четырьмя миллионами рублей.

**– Анатолий Кириллович, нет ли у вас фактов насчет того, что некоторые общественные организации, партии, движения готовятся бойкотировать работу Конгресса?**

– Уверен, что Конгресс пройдет на деловой, конструктивной основе. На ваш вопрос отвечу так: нет оснований для тревог.

**– Но ведь писатель М. Юхма заявлял о чем-то подобном.**

– Это его личное дело. Не думаю, что члены ЧОКЦа попытаются организовать митинг или пикет. Впрочем, это опять же их дело.

**– Находятся горячие головы, которые заявляют по поводу проведения Конгресса, что над республикой сгущаются тучи национализма...**

– Думаю, что в числе делегатов гораздо меньше будет националистов, чем представителей взвешенного подхода к такой сложной и взрывоопасной проблеме, как национальный вопрос.

Записал Вячеслав КИВОЙЦЕВ.
*«Чăвашъен», 1992, №40.*

## Атнер ХУЗАНГАЙ: ЧНК – ЭТО КОНГРЕСС ОДНОЙ НАЦИИ, ТРЕТЬЕЙ ПО ЧИСЛЕННОСТИ ИЗ КОРЕННЫХ НАРОДОВ РФ

**– Какова численность ЧНК, откуда приехали делегаты! Есть ли люди из дальнего зарубежья!**

– Чувашский национальный Конгресс имеет два значения: 1) высшее представительное собрание чувашского народа (Чăваш халăхĕн Аслă Пухăвĕ) и 2) высший, постоянно действующий орган чувашского народа. Как собрание – это порядка 1000 делегатов, представителей чувашского народа республики и чувашской диаспоры. По адресам дальнего зарубежья послано более 20 телеграмм-приглашений. Ожидается приезд Сергея Падюкова из США, председателя американского отделения Международной организации по правам человека, бизнесмена. Более подробной информацией я пока не располагаю.

**– Чувашский национальный Конгресс – это Конгресс одной нации?**

– Да, это Конгресс – высшее представительное собрание одной нации, третьей по численности из коренных народов РФ, которая волею судьбы разбросана по всему белому свету и имеет много жгучих проблем (впрочем, как и другие народы в постимперский период своего развития), которые хотел бы обсудить, наметив перспективу на будущее.

Но в самой работе форума будут принимать участие не только чуваши, но и официальные делегации соседних республик и областей, представители национально-культурных центров (татарского, мордовского, русского) республики и т. д.

**– Какие общественные движения и партии представлены на Конгрессе?**

– Списки делегатов представляли разные партии и объединения. Вокруг окончательного списка тоже идет какая-то суета (обычный метод действий аппарата). В мою компетенцию, как члена оргкомитета, эти вопросы не входили.

**– Эксперты Минюста ЧР предъявили ряд претензий к проектам решений ЧНК. Почему? Работа по составлению проекта велась без их участия?**

– Некоторые юристы этого ведомства (не отношу это к самому министру Яковлеву Николаю Васильевичу) рьяно бросились исполнять команду тех должностных лиц, которые постоянно чего-то опасаются и, очевидно, не очень хорошо знакомы с международно-правовыми документами, закрепляющими и развивающими понятие неотъемлемого права народов на самоопределение. Мы прошли с честью двойную экспертизу Минюста. Что-то не припомню случая, когда бы так же тщательно ревизовались законопроекты нашего парламента.

**– Не создается ли ЧНК с целью давить на Верховный Совет ЧР?**

– ЧНК будет давать свои предложения, высказывать свои мнения и предъявлять свои требования (в части удовлетворения конституционных и зафиксированных международно-правовыми документами национальных прав) в адрес и Верховного Совета ЧР, и Верховного Совета РФ, а также органов государственной власти и управления других регионов, где компактно проживает чувашское население, но не имеет возможности удовлетворить свои национально-культурные интересы.

**– ЧНК возьмет курс на создание этнократичаского государства?**

– ЧНК будет действовать в соответствии с «Хартией прав человека» (1948–1966 гг.), другими документами ООН и Совещания по безопасности и сотрудничеству в Европе. Особое значение в этом плане имеет 1993 год, который объявлен ООН Годом коренных народов. Подготовлено несколько проектов Декларации прав народов для очередной Генеральной Ассамблеи ООН.

**– Какие задачи «минимум!» и «максимум» вы бы сформулировали для ЧНК?**

– Максимум – это возрождение, реализация права на развитие, национальная консолидация чувашского народа. И трудная, повседневная черновая работа по поддерживанию связей с чувашской диаспорой, решение её проблем через федеральные органы власти РФ и местные администрации, участие в разработке национально-культурных программ. ЧНК должен будет предпринять конкретные шаги для установления контактов с международными неправительственными организациями, в частности, для вступления в ОННН (Организацию непредставленных наций и народов).

**– Будет ли в ЧНК своя оппозиция?**

– Зависит от избранного состава. Чувствуется стремление ввести в Большой Совет ЧНК представителей номенклатуры, а нам нужен постоянно работающий орган, аккумулирующий новые идеи в процессе национального возрождения и в сфере национальной – как внешней, так и внутренней – политики.

**–Отказ М. Юхмы от участия в ЧНК означает, что работу Конгресса будет определять ЧАП?**

– Отказ М. Юхмы от участия в работе ЧНК – это личное дело М. Юхмы, а ЧАП имеет свои цели и задачи, как политическая партия, но готова сотрудничать с ЧНК на паритетней основе.

**– Как представлен на Конгрессе ЧОКЦ?**

– На Конгресс избирались, в основном, делегаты чувашского народа, т. е. не по принципу представительства того или иного общественного объединения.

**–При проведении подобных мероприятий всегда есть опасность ухода в эмоции, перечисление проблем при отсутствии конструктивных предложений. На так ли?**

– Главное – сформировать (избрать) постоянно действующие органы ЧНК – Большой и Малый Советы – и принять весь пакет подготовленных документов, которые имеют жизненно важный, концептуальный характер.

**– Если создается аппарат ЧНК, то как предусмотрен механизм его постоянного обновления, препятствующего забюрократчиванию этой структуры?**

– ЧНК будет скорее совещательно-консультативным органом и должен выходить в плане реализации своих программ на фонд Чувашского национального конгресса (уже есть!) и Госкомитет по национальной политике, создание которого в структуре нашего правительства предполагается. Все это расписано в Уставе ЧНК, который будет принимать Конгресс.

Г. ИВАНОВ.

*«Чăвашъен», 1992, №41.*

# ТĂВАЛЛА ПУЛСАН ТА – МАЛАЛЛА

## Ĕнер Шупашкарта Чăваш наци конгресĕ ĕçлеме тытăнчĕ

*Чылайранпа кĕтнĕ, шаннă самант çитрĕ. Ĕнер иртенпех çумăр лўшкетчĕ, кунĕ ăмăр тăратчĕ пулин те чăвашăн хĕвел тухрĕ. Пирĕн хĕвел. Тĕнче тăрăх сапаланнă йăхташсен хĕвелĕ, йĕпе çанталăк чăвашсен пĕрремĕш Аслă пухăвне кансĕрлеме пултараймарĕ. Никам та кансĕрлес çук.*

Филармони çуртĕнче ирхи çиччĕрех халăх хĕвĕшетчĕ. Алăкран делегат мандачĕсемпе тата ятарлă пропусксемпе кăна кĕртеççĕ. Йĕрке сыхлавçисемпе хăрушсăрлăх службин сотрудникĕсем те кунтах. Пĕтĕм Раççейри канашлу ирттернĕ чухнехи пек тĕрĕслесе кĕртмелли ятарлă кабина вырнаçтарман, çапах та форум ĕçне нимĕн те ан чăрмантартăр тесе сыхлăха вăйлатни сисĕнчĕ. Фойере мĕн кăна çук-ши? Столовăйра ĕçлекен ăстасем тĕрлĕ кучченеç пĕçерсе килнĕ, апат-çимĕçĕ – сĕтел тулли. Чăваш тумĕ тăхăннă пикесем сăрапа сăйлаççĕ. Пĕри хăй пухнă кивĕ укçасен коллекцийĕпе паллаштарать. Алăпа тĕртсе тунă сĕтел çиттисем, салфеткăсем, ытти паха япаласем туянма май пур. «Кинком» пĕчĕк предприяти хушпусемпе тухьясем сутать. Йўнĕ мар паллах. Сăмахран, хушпу 2700 тенкĕ. Тĕрлĕ çĕртен килнĕ ентешсем хакне пăхмасăрах темиçешер туянаççĕ, татах туянас пирки калаçса татăлаççĕ. Календарьсем, тĕрлĕ хаçат-журнал, кĕнеке сĕнекен чылай.

Наци конгресĕпе пĕрле паян тепĕр хаҫат ҫуралнă. Чăваш аталану партийĕн ертӳҫисем «Аталану» хаҫатăн пĕрремĕш номерне тĕркитĕркипе ҫĕклесе килчĕҫ. Пушкăртсем Ухсай Яккăвĕн сăнне ӳкернĕ значоксем илсе килнĕ. Фойере чăваш юрри-кĕвви янăрать. Хăнасем сăн ӳкерттереҫҫĕ.

– Салам, тăванăм. Уяв ячĕпе! – чуна ҫывăх сăмахсем кашни утăмрах илтĕнеҫҫĕ. Эпĕ те ҫак сăмахсемпе ырă сунса **С.П. Юшков** доцента (университетра е пединститутра чăваш чĕлхи вĕреннисем ăна лайăх пĕлме тивĕҫ) алă пырса тытрăм.

– Ҫĕнĕ суха касси уҫатпăр паян, – тет вăл кăмăллăн. – Куҫ уҫăлать. Халăх вăранать. Ултавлă тĕтĕм-сĕрĕмрен тасалма пуҫлани мана шанăҫ парать.

Петĕр Ялкир поэт чăваш тумĕпе килнĕ. Ытти делегатсем хушшинче те чăвашла тăхăннисем сахал мар: Йĕркелӳ комитечĕн пĕр членĕ делегатсем палăртнинчен ытларах килнĕ пирки журналистсем валли вырăн ҫитмест пуль тесе пăшăрханни кăлăхах пулчĕ. Пурин валли те ҫитрĕ вырăнĕ.

Вунă сехет. Зал лăк тулли. Президиумра – **Э.А. Кубарев, В.Н. Викторов,** делегацисен пуҫлăхĕсем, хаклă хăнасем. Пирĕн паллă ентешсем килсе ҫитнĕ: **А.Г. Николаев** космонавт, **Г.Н. Волков** академик, **В.К. Кузьмина** артистка тата чăваш ятне ҫӳле ҫĕкленĕ ытти нумай-нумай паллă ҫын. Сăмах май, делегатсем Андриян Григорьевич чăнах килнĕ-ши, хăй курăнмасть-ҫке текелесе иккĕленнине кура унăн ура ҫине тăма тиврĕ, вара президиумри хыҫалти ретрен мала куҫса ларчĕ. Ăна саламласа чылайччен алă ҫупрĕҫ. Ара эпир ăна космонавт ҫи-пуҫĕпе курма хăнăхнă, ку хутĕнче вăл ахаль тумпа килессе шутламан-тăр, нумайăшĕ ăна халăх хушшинче тӳрех уйăрса илеймен.

Конгреса уҫма **М.Р. Федотов** профессора ирĕк пачĕҫ. Хăйĕн кун-ҫулĕпе, ĕҫĕ-хĕлĕпе, чăн чăвашлăхĕпе тивĕҫ пулнă вăл ҫак пысăк чыса. Вăл, кĕске сăмах каласа, Чăвашсен Аслă пухăвĕ уҫăлни ҫинчен пĕлтерчĕ. Наци гимнĕ янăрать. Пурте ура ҫине тăчĕҫ. Манпа юнашар тăракан ватă чăваш хĕрарăмĕн куҫĕнчен куҫҫуль юхса анчĕ. Аякра пурăнакан ентеш ҫак хумханullă самантра пичĕ тăрăх вĕри куҫҫуль сăрханнине туймасть те тейĕн. Чăнах та, епле чăтайăн-ха куҫҫуль кăлармасăр. Конгреса ертсе пыракан ЧР Аслă Канашĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ **Б.М. Яковлев** кĕске сăмах каларĕ, вăл икĕ миллионлă халăх ывăл-хĕрне пĕрле пуҫтарăннă ятпа саламларĕ. Ют ҫĕр-шывсенчен – СШАран, Венгрирен килнисем те пур.

– Асаплă та телейсĕр кун-ҫул чăвашсене уйăрса янă. Ҫапах та эпир пĕр халăх пулнине манмастпăр, тăванлăх туйăмĕ пире пĕрле пуҫтарчĕ, – палăртрĕ Б.М. Яковлев.

Ҫăкăр-тăвар, ҫăмарта тата сăра курки ҫĕклесе тухнă виҫĕ чăваш пехил сăмахĕ каларĕҫ. Ун хыҫҫăн Аслă пухăвăн ĕҫ тăвакан органĕсене (секретариат, редакци ушкăнĕ, мандат комиссийĕ, шутлав комиссийĕ) суйларĕҫ делегатсем.

Тĕп доклада кам тăвать-ши тесе иккĕленекен чылайччĕ. Йĕркелӳ комитечĕн пуҫлăхĕ, Аслă Канаш Председателĕ Э.А. Кубарев чăвашла таса калаҫайманнипе ун вырăнне урăх ҫынна шанса параҫҫĕ пуль тесе шутланăччĕ. Йăнăшнă. Тăван чĕлхепе вăлах тухса калаҫрĕ. Пирĕншĕн ку пĕчĕк сенсаци. Залра чăвашсемпе пĕрле вырăссем, ют ҫĕр-шыв ҫыннисем ларнине шута илсе, вĕсене тухса калаҫакансен сăмахне вырăсла тата акăлчанла куҫаракан хатĕрсемпе тивĕҫтернĕ.

Юлашки вăхăтра чăваша икĕ хутчен килсе кайнă Раҫҫей Аслă Канашĕн Председательне Р.И. Хасбулатова та йыхравланă Конгреса хатĕрлекенсем. Хальхинче Руслан Имранович килме май тупайман, Аслă пуху делегачĕсене ырлăх-сывлăх, ăнăҫу сунса салам хучĕ янă. Раҫҫей Президенчĕ Б.Н. Ельцин та Шупашкара саламлă телеграмма ҫаптарнă.

Ҫум докладсене Аслă Канаш Президиумĕн членĕ **А.П. Хусанкай**, кĕнеке издательствин директорĕ **И.Д. Вутлан** тата Чăваш наци конгресĕн фончĕн пуҫлăхĕ **Н.В. Пыркин** турĕҫ. Хусанкая уйрăмах ăшшăн йышăнчĕҫ. Нумай вăхăт хушши тăваллăн алă ҫупнипе ун темиҫе хутчен те чарăнма тиврĕ.

Доклада сӳтсе явнă чухне трибуна умне тухнă. **Г.Н. Волков** академик сăмахне те питĕ тимлĕ итлерĕҫ пухăннисем, темиҫе хутчен тăваллăн алă ҫупрĕҫ.

Г.Н. Волков республикăра ҫĕр сутас енĕпе питĕ асăрханулă пулма, чăвашсен тĕп хулин официаллă ятне вырăсла та Шупашкар тесе палăртма сĕнчĕ. Кунсăр пуҫне вăл Чăваш наци кунĕн уявне И.Я. Яковлев ҫуралнă кун паллă тумалла тесе шутлать.

Конгресра ҫавăн пекех Чăваш халăх поэчĕ В.И. Давыдов-Анатри, Тюмень, Камчатка, Самар, Чĕмпĕр тăрăхĕсенчен килнĕ делегацисен ертӳҫисем **А.И. Архипов**, **Саватеев, Симаков, Ильин**, Тутарстан Аслă Канашĕн Председателĕн заместителĕ **Лозовой** тухса калаҫрĕҫ. Пирĕнте мĕн ырри пур – ҫавна упраса хăвармалла терĕҫ вĕсем. Паллах, аякри йăхташсене тăван чĕлхене, тăван культурăна чĕртсе тăратас ыйтусем питĕ хумхантараҫҫĕ. Вырăс тата ытти халăх хушшинче ҫухалса кайнă чăваш шăпи пурне те канăҫсăрлантарать.

Тăхтавра делегатсене Тутарстанри Анат Кама хулинчен килнĕ «Шăнкăрав» ансамбль юрă-ташăпа саламларĕ. Пурте тенĕ пекех ҫамрăксен. Ушкăнра профессиллĕ юрăҫсем ҫук пулин те – чăваш юррине епле чуна тыткăнламалла шăрантараҫҫĕ. Ташшисем тата! Ҫавна кура хăш-пĕр делегатсем те тӳссе тăраймарĕҫ, чипер хĕрсемпе пĕр авăк савăнса юрларĕҫ, унтан ташша ячĕҫ. Чăнах та, Ҫĕнĕ кун аки ҫитрĕ пирĕн тăрăха, шурă Шупашкарăмăра. Тĕнчене тухмалăх ăс-тăн та, асаплă кун-ҫулăмăр та, пуян культура та, ĕҫчен те пултарулă ҫынсем те пур пирĕн. Тăванăмăрсем! Чăваш ывăл-хĕрне пĕр тĕпеле йыхăрнă Аслă пуху пĕлтерĕшĕ калама ҫук пысăк.

Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.<br>*«Хыпар», 1992, юпа, 9, 202 №.*

# М.Р. ФЕДОТОВ СĂМАХĔ

Ҫывăхри тата инҫетри тăванăмсем! Хаклă хăнасем!

Куҫпа висейми, вĕҫне ҫитейми тенĕ пек аслă зала пĕтĕм чăваш тĕнчинчен пуҫтарăннă хăна-делегатсене кура чун савăнать, кăмăл тулать.

Чăвашсен Аслă Пухăвне – Конгресне уҫас умĕн мана пĕр-икĕ сăмах калама ирĕк парсамăр.

Чăваш наци конгресĕ умĕн пуҫланнă дискусси материалĕсене пурте вуласа пычĕҫ пулмалла. Сасă-кĕвĕ тĕрлĕрен пулчĕ. Ҫапах та сиксе юхакан шарланкă-кĕрленкĕ сасси халĕ те уҫҫăн янăрать – чăвашсене чăвашлăх кирлĕ.

«Чăвашлăх» сăмахăн пĕлтерĕшĕ анлă, анчах вăл чи малтан Чăваш Республикин хăйсене тивĕҫ сăн-сăпачĕ пулмалла тенине пĕлтерет. Ун пирки Аслă Пуху – Конгресс – каласа-ҫырса хăварасса шанас килет.

Эпĕ ăнланнă тăрăх суверенитет ăнлав – чăвашăн мулĕ-пурлăхĕ ун аллинче пултăр, республикăри пĕтĕм укҫа-тенкĕ ун енчĕкне кĕтĕр, тӳре-шара чăваша хирĕҫ кавар ан тутăр, аталанма, вăйлăланма ҫĕкленнĕ чăваш умĕнче тĕрме алăкĕ мар, такăр ҫул уҫă пултăр, ун ҫине тухма ан чăрмантартăр.

Чăваш нацийĕ пирки хĕрсе тавлашатпăр. Ун ҫинчен Конгресс тĕрĕс сăмах каласа хăварĕ тетĕп. Анчах чăваш нацийĕ халĕччен те пĕтĕҫсе ҫитеймен-ха. Вăйăмăрпа-и, нушамăрпа-и ҫĕкленсе, хамăр кам иккенне ăнланса илсен, пур чăваш та пĕр чăмăр пулса тăрсан тин чăваш нацийĕ пулĕ. Унсăрăн ҫук вăл. Анчах та чăваш нацийĕ пирки ҫур сăмах калама тăрсанах, ахăр самана ҫитнĕ тейĕн, хăшĕ-пĕри сиксе тăрать те чышкăпа юнама тытăнать. Ак пĕр тĕслĕх. Чăваш наци академине илер. Мĕн кăна каласа пĕтермерĕҫ ăна хирĕҫ. Чăваш конгресне уҫма эрне юлсан тин ăна пурăнма ирĕк пачĕҫ. Унччен патне те ямарĕҫ:

Чăваш наци академийĕ националистсене хатĕрлесшĕн-и вара? – терĕç. *Оппонентсене çапла каласа хăварассăм килет: наци, нацизм, национализм ăнлавсем пĕр карта лармаççĕ. Ан манăр çавна! Кирек мĕнле нацин хăйĕн политики пулмалла. Ăна тĕрĕс тытса пырсан наци аталанăвĕн çитĕнĕвĕ хăвăрт ÿссе кайĕ, нацисен туслăхĕ тин ура пусĕ.*

Тата акă мĕн хушнă пулăттăм. Çĕнĕ чан сассине пурте илтесшĕнех мар-ха. Çĕнĕ вăхăт çĕнĕ ертÿçĕсен çунатне пушшех çĕклерĕ. Анчах ĕнерхи «хаклă юлташсем» шăл çыртса кăна чăтам пек тăваççĕ. Вĕсен аллинчен кусăр карт тухса ÿкмен-ха: хурах! Демократ-ертÿçсем чăвашсемпе вырăссене çапăçтарасшăн теççĕ. Ку, паллах ĕнтĕ, хура юнлă «патриотсемпе» «интернационалистсен» политики, ăна уйăрса илме куçлăх та кирлĕ мар. Çамрăксем, çакна кирек хăçан та, кирек ăçта та тăрă шыв çине кăларса пырăр.

Конгреса хатĕрленнĕ май прессăра тата ытти сасăсем те илтĕнчĕç: чăвашсене Конгресс кирлĕ те мар имĕш. Мĕншĕн кирлĕ мар-ши? Конгресс чăвашсене, Раççей аслă çулĕнчен пăрса, наци тăкăрлăкне илсе кĕрет иккен. Кунта та чăваш чĕлхи айăплă, вăл, пăхăр-ха, чăвашсене вырăссемпе пĕрле килĕштерсе ĕçлеме, курăнма чарать-мĕн! Суяран та суя.

И.Я. Яковлев халалĕнчи сăмахсене манас марччĕ: «Эсир хăвăр халăхăрăн чĕлхине хирĕç тăмасан, халăх кăмăлне пĕтĕмпех хăвăр аллăрта тытса тăрăр. Ху чĕлхÿне пăрахманни вырăс халăх ĕçне ултавлă туса сутни пулмасть вăл, аннĕрсенчен вĕренсе юлнă хăвăн тĕп чĕлхÿне пăрахмасăрах вырăсăн аслă патшалăхĕшĕн ĕçлесе тăма пулать», – тенĕ унта.

Хаклă тăван-пĕтен!

Ĕç хушшинче хирĕçлев сиксе тухсан е пĕр касă сивĕ çил вĕрсенех уран ан ÿкĕр, ăсăр-пуçăр хăватне шĕветсе ан ярăр.

Ултав е ирсĕр сăмах илтсен – пĕр хăлхана чикĕр те тепĕринчен кăларăр.

Шупашкара, шĕкĕр хуламăра, мĕн тĕллевпе пуçтарăннине ан манăр.

Юнашар тăрса, алла-аллăн тытăнса – пуçланă ĕçĕре вĕçне çитиччен тăвăр.

Шаннă кайăкăр йăвинче пултăр!

Хаклă делегатсем, хисеплĕ хăнасем! Чăвашсен пĕрремĕш Аслă Пухăвне уçăлнă тесе пĕлтеретĕп.

## Б.М. ЯКОВЛЕВ СĂМАХĔ

Хисеплĕ юлташсем! Хаклă хăнасем! Ытарайми тăвансем!

Чăваш çĕрĕнче паян – Тăванлăхпа Пĕрлĕх. Тăван республикăн тĕп хулинче, шурă Шупашкарта, Аслă Пуху пуçланать. Чăваш халăхĕ, чăваш çынни тахçантанпа ĕмĕтленсе кĕтнĕ кун çитрĕ. Калама çук вăрăм кун-çул утса тухнă, хăйĕн ĕмĕрĕнче сахал мар хĕн-хурпа мăшкăл тÿснĕ пулсан та, кÿршĕ-аршипе яланах килĕштерсе те тăнăçлă пурăнакан икĕ миллионлă чăваш халăхĕн шанса янă ывăлĕ-хĕрĕ çак Аслă пухăва пуçтарăнчĕ.

Чăваш Республикин Аслă Совечĕпе Министрсен Совечĕ суверенлă Чăваш Республикинче пурăнакан кашни ĕç çынни ячĕпе – ирĕк парсамăр мана Чăваш наци конгресĕн делегачĕсемпе хаклă хăнасене чун-чĕререн ăшшăн саламлама!

Паллă ĕнтĕ: асаплă та тумхахлă кун-çулăмăр пире, чăвашсене, уйăрса пĕтĕм тĕнчене сапаласа янă. Халăхăмăрăн çурри ытла паян республика тулашĕнче пурăнать. Çапах та, шăпамăр пире пĕр-пĕринчен уйăрма темле тăрăшсан та, эпир самантлăха та хамăр пĕр йыш, пĕр халăх пулнине манмарăмăр, ÿлĕм пушшех асран ямăпăр.

Сăваплă та пархатарлă çак кăмăл-туйăм пухрĕ пире пĕр çĕре – тăван халăхăмăрăн пуласлăхĕ пирки хамăр чунран пăшăрханнине палăртма, ыран хамăр утас пĕртен пĕр тĕрĕс çул-йĕре суйласа илме, ачамăрсене чăваш сăмахне, чăваш юррине, чăваш илемне пиллесе хăварма.

Чăвашсен пĕрремĕш Аслă Пухăвне, асаттесем калашле, тĕнчен çитмĕл те çичĕ кĕтесĕнчен ушкăн-ушкăн пухăнса хаклă хăнасем килсе çитрĕç. Акă вĕсем: Беларуç, Литва, Кăркăсстан, Казахстан, Латви, Молдова, Узбекистан, Украина, Эстони патшалăхĕсем, Карел, Коми, Мари Эл, Мордва, Удмурт, Пушкăрт, Тутар, Якут республикисем, Амур, Архангельск, Алтай, Брянск, Воронеж, Владимир, Белгород, Вологда, Волгоград, Свердловск, Иваново, Иркутск, Калуга, Киров, Курган, Кемерево, Красноярск, Камчатка, Калинград, Кострома, Магадан, Новосибирск, Мурманск, Мускав, Омск, Оренбург, Пенза, Пермь, Приморск, Рязань, Ростов, Санкт-Петербург, Самар, Саратов, Сахалин, Смоленск, Томск, Тюмень, Тверь, Тула, Чĕмпĕр, Хабаровск, Челябинск, Чулхула, Чита, Ярославль облаçĕсемпе крайĕсем, Ханты-Манси округĕпе Хакас автономи облаçĕ.

Чикĕ леш енчен килнĕ: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен, Венгрирен, Голландирен, Германирен.

Аслă Пуху ĕçне çавăн пекех тĕнчипе чапа тухнă пирĕн паллă ентешсем хутшăнаççĕ.

## ЧĂВАШ НАЦИ ЧĔРĔЛĔВĔ – КУН-ÇУЛ ХИСТЕВĔ
### Э.А. Кубарев доклачĕ

Хаклă хăнасем, тăвансем, чăваш халăхĕ, ывăлĕсемпе хĕрĕсем!

Çĕр-шывăн мĕн пур кĕтесĕнчен, аякри чикĕ леш енчен пухăнтăмăр эпир паян çак йышпа тăван Чăваш çĕрĕ çинче! Раççей Федерацийĕнче, çывăхри тата аякри чикĕ леш енче пурăнакан тăвансем суйласа янă чăвашсен пысăк та тивĕçлĕ форумне пухăнтăмăр. Тăванлăх туйăмне чăвашсем мĕн авалтанах хаклама пĕлнĕ. Тахçан авалхи чăваш юррисенче, паянхи кунччĕнех сыхланса юлнă кĕвĕ-çемĕре тăванлăх, туслăх çинчен, хамăр тăвансене юратса хисеплеме кирли çинчен юрланă. «Туслăхпа тăванлăхсăр пуçне çут тĕнчере мĕн хаклă пултăр!» – тесе юрланă чăваш. Сире хамăрăн Тăван çĕр-шывра саламласа ырă сунма ирĕк парăр. Хапăл тăватпăр пурне те!

Çак трибуна çине мĕнле тĕллевпе тухнине кĕскен çеç палăртма пулать: пĕчĕк тата пысăк халăхсем çинчен, нацисене йышне кура пайласси çинчен чи малтанах пирĕн хамăрăн каласма пăрахмалла. Пирĕн çĕнĕ ăрусене наци пĕрлĕхне парса хăвармалла, чăваш халăхĕ çĕр çинчи ытти мĕн пур халăхсен йышĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнтăр, хăйĕн шалти мăнаçлăх туйăмĕн çутине сыхласа хăвартăр.

«Çыхман хулă – шăпăр мар»,– теççĕ чăвашсем. Пурнăç пирĕн ума кăларса тăратнă йывăр задачăсене пĕтĕм халăхпа, кашни çине тăрса ĕçленипе çеç татса пама пулать. Иккĕленмелли çук: эпир цивилизацин çутă çулĕ çине тухăпăр, мĕншĕн тесен эпир хамăр халăх ырлăхĕшĕн пĕрле килĕштерсе, нимери пек вăй хума пĕлетпĕр. Ниме чăваш халăхĕн авалхи чи паха йăли-йĕркисенчен пĕри. Халăх пĕрлĕхĕ, наци пĕтĕçÿлĕхĕ – ку вăл çут çанталăк-анне хăй парнеленĕ таса туйăм. Истори улшăнăвĕсен тапхăрĕнче, демократилле улшăнусен уçă çилĕ вĕрнĕ май пирĕн нумай ăру ĕмĕтне пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм яваплăха хамăр çине илме тиврĕ. Чăвашсен конгресĕсем (съездсем) 1917–1918 çулсенче Чĕмпĕр хулинче пулса иртнĕ. Историшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ çак пухусенче никама пăхăнман чăваш патшалăхĕн идейине кăларса тăратнă, кулленхи политикăри лару-тăрăва сÿтсе явнă тата чăваш наци пуласлăхĕн малашлăхĕсене палăртнă.

Паллах, утса тухнă 75 çулхи çула пирĕн пур енлĕн шухăшласа, тарăннăн ăнланса илмелле. Çав тапхăрти система наци идейисен пĕлтерĕшне, пĕр наци çыннисем пĕрлĕхлĕ пулма кирлине çирĕп ăнланса тăнине, ирĕклĕх патне туртăннине пусарса лартма пултарайман. Çавна май республика экономикăра тунă çитĕнÿсене, халăха вĕрентес ĕçпе культурăн пурлăх никĕсне вăйлатнине шута илмесĕр хăварма пултараймасть. Çакна мĕнле вăй-халпа тата çул-йĕрпе тума пултарни, çут çанталăка мĕн чухлĕ сиен кÿни, мĕн чухлĕ яла пĕтерни, миçе шăпана хуçни пачах урăх япала.

Нацие, çынна вăйпа хăратни, çут çанталăка пĕр шелсĕр ăскаса тăкни ĕмĕрне те ырă пурнăç патне илсе çитерейменнине истори лайăх кăтартса пачĕ.

1985 çул хыççăн наcие çĕнĕрен чĕртсе аталантарма çĕнĕ майсем уçăлчĕç. Чăвашсен съезчĕсем, чăваш хĕрарăмĕсен аслă пухăвĕсем пулса иртрĕç. Паян чăваш халăх чĕрĕлĕвĕ социаллă пурнăçри тата психологи тĕлĕшĕнчи кăткăс лару-тăрура пулса пырать. Иртнĕ вăхăтра коммунистсем улталаса пурăннинчен тĕлĕнни, хальхи экономикăри лару-тăру пĕтĕм чун-чĕрене пăлхатни, Союз арканнă хыççăн халăх кăмăл-туйăмĕ тĕпрен улшăнни, саккунсем кăларакан тата ĕç тăвакан влаç органĕсене сахалтарах шанма пуçлани, социаллă пурнăçпа политикăри эпир хăнăхнă йĕркесем арканса пыни – çакă йăлтах хăйсене майлă витĕм кӳрет, чăваш наци чĕрĕлĕвне йывăрлатать. Пурнăç çине урăхларах пăхма пуçлани çынсене ыранхи куна шанман туйăма çĕнтерекен çирĕп çул-йĕр шырама хистет. Çавна май наци пĕрлĕх туйăмĕ кирек мĕнле пулсан та обществăри тата çынсен ăнлавĕнчи хирĕçле пулăмсемпе туйăмсене чакарма пулăшать.

Наци пĕрле пулсан ырă шухăш çуралать, ырă ĕç тăвас килет. Этемлĕх обществине малалла аталантармалли тĕллевсемпе малашлăхсене çакна шута илмесĕр палăртма май çук. Пĕтĕм этемлĕхĕн, мĕн пур граждансен чи паха енĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине шута илсен, обществăна чăнласах ăнăçлă аталантарма май пулать. Этем çут тĕнчене пĕрре çеç килет, çавăнпа та вăл хĕвелпе тӳпе айĕнче хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнасшăн. Ку вăл кашни çыннăн прави. Çĕр çинчи мĕн пур халăхсем уçă кăмăлтан, пĕр-пĕрне килĕштерсе, хисеплесе пурăнни, нацисене ирĕклĕ аталантарнă май экономикăна пĕрлехи вăйпа хăватлантарни пĕтĕм этемлĕхе цивилизацин çĕнĕ шайне илсе çитерме, вăрçăсемпе хирĕçӳсенчен сыхласа хăварма пулăшать.

Иртнĕ тапхăрта «Чăваш Республики» патшалăх тенĕ пулин те, тĕрĕссипе деклараци йĕркипе ячĕшĕн çеç туса хунă пĕрлешӳ пулнă. Союз министерствисемпе ведомствисем пирĕн республикăра хăйсем мĕн тăвас тенĕ çавна тума пултарнине чарма е хирĕç тăма май килмен пулсан, республика хăйĕн экономика политикине пурнăçа кĕртсе пырас, чăваш нацине тата тăван халăх культурине аталантарас енĕпе республикăри патшалăх влаçĕн чи аслă органĕсен мĕнле прависем пирки калаçма пулать-ха? Республика улăп пек промышленноç объекчĕсем туса лартнă, анчах унăн кирлĕ чухлĕ пурăнмалли çурт-йĕр, больницăсем, ача сачĕсем çук. Промышленноç улăпĕсем хăйсем те тăван республика рынокне кирлĕ таварсемпе тивĕçтерме пултараймаççĕ. Енчен те иртнĕ вăхăтри экономикăна пысăк сборка конверейĕпе танлаштарас пулсан, Чăваш Республики темĕнле иккĕмĕшле пĕлтерĕшлĕ ĕç тунă пек çеç курăнать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн республикăра ĕç укçи чи пĕчĕк шайра.

1990 çулхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕсенче Чăваш Республикин Аслă Совечĕ Патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан деклараци йышăнчĕ. Хăш-пĕрисем деклараци йышăннă хыççăн суверенитет туса хутăмăр та тесе шутларĕç пулĕ. Теприсем вара историлле çак документа черетлĕ хут пуш сăмах çаптарни вырăнне хурса йышăнма та пултарнă. Вĕсенчен пĕри те тĕрĕс мар. Деклараци пире мĕнле çул-йĕрпе каймаллине кăтартса пачĕ, халĕ эпир çав çул-йĕр çинче хамăрăн тĕп тĕллеве пурнăçлас тесе пĕрле ĕçлеме пуçлатпăр. Ман шутпа, халĕ экономикăпа политикăри чăн-чăн хăй тĕллĕнлĕхе çирĕплетмелли чи татăклă самантсенчен пĕри çитрĕ. Аслă Совет Председателĕ пулнă май çакна эпĕ пĕтĕм яваплăха туйса ăнланатăп.

Ку тĕлĕшпе мĕнлерех ĕçлеме кирли пирки темиçе сăмахпа палăртса хăварам. Пуриншĕн те паллă ĕнтĕ: пирĕн халăха аталантармалли хăйне евĕрлĕ çул-йĕрсем шырама кирлине ăнланатпăр пулин те – пирĕн Раççей йышĕнче, мĕн пур нацисемпе туслă, килĕштерсе пурăнса, экономикăра тачă çыхăнса ĕçлеме кирлине хирĕçлеме çук. Федераци договорĕ лайăх майсем уçса парать, ун çине эпир Аслă Совет депутачĕсен ытларахăшĕ хушнипе алă пусрăмăр, çакна республика халăхĕ ырласа йышăнчĕ. Кунта çĕр -шывăн тĕрлĕ регионĕсенчен килнĕ делегатсем пур. Енчен те эпир çак Договортан пăрăнса юлнă, хамăр уйрăлни çинчен пĕлтернĕ тата сире ют территорире пăрахнă, манса кайнă пулсан эсир пире ырланă пулăттăр-ши? Халĕ вара шăпах çавăн пек шухăшлама хăнăхнă: енчен те пирĕн территори уйрăлнă пулсан, ытти территорисем пурте – ют. Тĕрĕслĕхрен хăрама кирлĕ мар. Анчах эпир Раççейрех пурăнни, Раççейпе пĕрле пулни çинчен çирĕппĕн пĕлтертĕмĕр. Çавăнпа пĕрлех Договор экономикăра хăй тĕллĕнлĕх кăтартма тата пысăк майсем парать. Вĕсене пурнăçа кĕртесси тата çав майсемпе кирлĕ пек усă курма пĕлесси – йăлтах хамăртан килекен ĕç. Ку тĕлĕшпе эпир ĕçлеме тытăннă ĕнтĕ. Халĕ харпăрлăх пирки, бюджетсем пирки, право хутшăнăвĕсен енĕпе, наци банкне туса хурас тĕлĕшпе килĕшӳсем тума хатĕрленетпĕр. Çавна май пире Раççей Федерацийĕн Аслă Совечĕ, Раççей Правительстви тата Президент команди пулăшса пыраççĕ. Анчах Президентăн пирĕн Шупашкар ГЭСне Раççей холдинг компанине кĕртесси çинчен йышăннă тата Чăваш Республикипе канашламасăрах алă пусса çирĕплетнĕ указне эпир пĕр сăмахсăрах йышăнма пултараймастпăр.

Хамăн умри пĕтĕм яваплăха туйса çапла пĕлтерме пултаратăп: республика ертӳçисем пирĕн территорире халăхăн ытларах пайĕ ырласа йышăнмасăр иккĕленӳллĕ программăсем пурнăçа кĕртме ирĕк памĕç.

Республика суверенитетне политика тĕлĕшĕнчен çирĕплетмешкĕн президент влаçне туса хуни пулăшать, ку тĕлĕшпе Аслă Совет тивĕçлĕ саккунсем йышăннă ĕнтĕ. Çитес сессире пирĕн, экономикăпа политика тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва шута илсе, республикăн çĕнĕ Конституцине – аталанăвăн çĕнетнĕ идеологине пурнăçа кĕртме палăртакан Тĕп саккуна – йышăнма кирлине тĕпе хурса президент суйлавне хăçан ирттересси пирки пур енлĕн шухăшласа пăхма тивет.

Чăваш ĕç халăхĕ çынна нихăçан та мĕнле наци пулнине кура уйăрман, ĕмĕрне те çакăн пек йăла пулман унăн. Мĕн авалтанпах вырăссемпе, çармăссемпе, мăкшăсемпе, тутарсемпе туслă, килĕштерсе пурăннă, халĕ те çаплах. Чăваш Республикинче халĕ 90 ытла наци представителĕ пурăнать. Паллах, çакă пĕрлехи наци политикине пурнăçа кĕртес ĕçре хăш-пĕр йывăрлăхсем кăларса тăратать ĕнтĕ, анчах çав хушăрах чăваш халăхĕн культура шайĕ, унăн çынлăхĕ тата шалти мăнаçлăх туйăмĕ çӳллĕ шайра пулнине пĕтĕм тĕнчене тивĕçлипе кăтартса парать. Ку пире тăван халăхшăн чăнласах мăнаçлантарать.

Чăваш нацийĕ, пĕтĕмĕшле илсен, хăйĕн ĕмĕрхи чи паха енĕсене, хăйне евĕрлĕ культурине, чĕлхине, тĕнне, юррисене, тĕрĕ-эрешĕсене, йăли-йĕркине сыхласа хăварнă. Пирĕн халăх хăйсене нихăçан та чура пек туйман, шăпах çавăнпа ĕнтĕ Степан Разин, Емельян Пугачев ертсе пынă хресченсен пăлхавĕсене, ирĕклĕхшĕн пынă ытти юхăмсене чăвашсем нумайăн хутшăннă. Эпир хамăр авалхи халăхсенчен пĕри пулса тăнине нихçан та манмалла мар, Атăлçи Пăлхар территорийĕнче хамăрăн патшалăх пулнине те шута илмесĕр тăма юрамасть. Наука литературинче чăвашсем мĕнле пулса кайни çинчен çырса хăварнă тĕрлĕ гипотезăсем пур. Истори, культурăпа чĕлхе даннăйĕсене тĕпе хурас пулсан, тĕпчевçĕсенчен ытларахăшĕ чăвашсем вĕсем тĕрĕк чĕлхипе калаçакан пăлхар тата сăвар йăхĕсен ăрăвĕсем пулнине йышăннă, вырăнти финн-угорсен пĕр пайне те хăйсен евĕрлĕ тунă, чăвашсемпе пĕрпеклетнĕ.

Паллă ĕнтĕ: чăвашсем Атăлçи пăлхарĕсемпе тăванлă пулни çинчен чи малтан вырăссен паллă историкĕ В.Н. Татищев каланă. Çак теорие вара XX ĕмĕр пуçламăшĕнче тин паллă ученăй-тюрколог Н.И. Ашмарин «Пăлхарсемпе чăвашсем» текен ĕçĕнче наука тĕлĕшĕнчен никĕсленĕ.

Партипе правительство догмисем пирĕн историе тĕрĕс çутатман, пуç пулса тăракан идеологие тивĕçтерес тесе чăваш халăхĕн историйĕнчи нумай сыпăка кăлара-кăлара пăрахнă. Пирĕн историе совет историйĕ çумне хушса панă приложени пек çеç тишкернĕ. Пĕр иккĕленмесĕр, тӳрех калас пулать: хамăр историе асра тытассине çĕнĕрен йĕркене кĕртсе çирĕплетмелле. Ку тĕлĕшпе эпир пирĕн творчество интеллигенцийĕ, ученăйсем, правоведсем нумай пулăшасса шанма пултаратпăр.

Наци чĕрĕлĕвĕ экономикăпа тӳрремĕнех çыхăннă. Ăна çĕнетсе лайăхлатмасăр тата экономика суверенитечĕн никĕсĕ çинче ытти регионсемпе договорсем тунипе вăйлатмасăр паянхи çивĕч ыйтусене татса пама пурлăх условийĕсем туса хурасси пирки ĕмĕтленме

йывăр. Кирек хăш республика, облаç, край та пĕр-пĕринчен уйрăлса пурăнаймасть. Тата, паллах, экономика тĕлĕшĕнчен илес пулсан наци чĕрĕлĕвне вырăнти экономика условийĕсене, халăхăн ĕмĕрхи йăли-йĕркине, унăн кăмăл-туйăмне, опытне, профессипе техника шайне тата ĕçлес пултарулăхне тивĕçтерме пултаракан производство ĕçне аталантарассипе тачăран та тачă çыхăнтармалла.

Республика нумай отраслĕ экономикăна аталантарать. Пирĕн патăрта çĕнĕ йышши технологи производстви паллă вырăн йышăнать, унта пирĕн граждансем вăй хунипе промышленноç тракторĕсем, электротехника приборĕсем, станоксем тата ытти нумай тĕрлĕ продукци туса кăлараççĕ. Чăваш Енре халĕ 200 ытла заводпа фабрика, вĕсем хăйсен продукцине тĕнчери 65 çĕр-шыва ăсатаççĕ. Республикăра хими промышленноçĕ аталаннă. Çакă вăл хамăр пурнăçа ĕçлесе лайăхлатма май паракан услови. Енчен те тата йывăртарах, наука тĕлĕшĕнчен тата вăйлă аталаннă отраслсен ĕçне йĕркелес пулсан тĕрĕс тăватпăр. Паянхи экономикăри демократи шайĕ, пирĕн наци уйрăмлăхĕсем (сахал çĕр çинче халăхăн пысăк йышĕ пурăнни), чĕр тавар çукки, – çакă йăлтах ку вăл пирĕн пĕртен пĕр тĕрĕс çул-йĕр пулнине кăтартса парать. Çак çул-йĕр тĕнче экономикинче те нумай çĕр-шыва вăйлă аталанма май панă. Япония илсе пăхăр!

Кăçалхи çула эпир Чăваш Республикине рынок хутшăнăвĕсене куçармалли программăпа кĕтĕмĕр. Унччен правительство хатĕрленĕ Программăна экономика реформисене шута илсе тӳрлетӳсем кĕртсе пытăмăр. Паян ĕç укçине палăрмаллах ӳстерессипе чи малти вырăна тухса тăрать. Çак кăтартупа эпир Раççейри регионсен йышĕнче кайрисен шутĕнче сĕтĕрĕнсе пыма пултараймастпăр. Çакна мĕнле тумаллине кашниех пĕлет: ĕç тухăçлăхне ӳстермелле, уйрăмах агропромышленноç комплексĕнче ĕç меслечĕпе йĕркисене улăштарса пымалла. Урăхла хурав çук. Ĕçлекен вăй, уйрăмах ялти ĕç вăйĕ пуррине шута илес пулсан, хамăр экономикăна аталантармалли малашлăхсем пысăк.

Çĕр-шыври чăвашсен çуррине яхăн, республикăри чăваш халăхĕн 44 процентĕ яллă вырăнта пурăнать. Ман шутпа, ку наци ылтăн фончĕ тесен те йăнăш пулмасть, ăна шансан эпир нумай ыйтăва татса пама пултаратпăр. Чăвашăн таса та илемлĕ чĕлхи, йăли-йĕрки, авалхи культура паллисем тата наци ытти паллă атрибучĕсем уйрăмах ялта сыхланса юлнă. Раççей Президенчĕ Б.Н. Ельцин пирĕн республикăна нумаях пулмасть килсен пирĕн йăлана кĕнĕ ăсталăха – сăра тăвас ăсталăха тӳрех асăрхарĕ тата ырларĕ. Кăна эпĕ сăмах май çеç каласа хăвартăм. Чи кирли вара пирĕншĕн – халăхра сыхланса юлнă чĕлхе пуянлăхĕпе туллин усă курасси. Шел те, нацисене пĕрлештерсе, пĕрпеклетсе ямалли искусствăлла политика, уйрăмах хуласенче пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшнă политика тăван чĕлхене манасси патне илсе çитерчĕ. Хăйсем чăваш пулин те тăван чĕлхене ăнланман çынсем сахал мар. Чун ыратать, анчах ку вăл пирĕншĕн инкек, иртнĕ вăхăт юлашки, çакна пирĕн ку чухнехи условисенче шута илме тивет. Апла пулин те эпир нацие çакăншăн е таса чăвашла калаçманшăн тĕрлĕ сорт çине пайлама пултараймастпăр. Кунта çав тери тимлĕ, асăрханулла пулни, пĕр-пĕрне хисеплени кирлĕ.

Чĕлхе ыйтăвĕпе пирĕн çывăх çулсенче çав тери тимлĕ ĕçлемелле. Чĕлхе сыхланса юлсан – халăх та сыхланса юлать. Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен йышăннă саккун хăйсене хăй пурнăçланса пымĕ. Унпа тимлĕ ĕçлемелле, саккуна пăхăнса тăнине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Кунта кăшкăрашнипех ĕç тухмĕ. Çакна пурин те ăнланмалла.

Пăшăрхантаракан тепĕр ыйту – пĕтĕм чăваш хушшинче тăван чĕлхе пĕлтерĕшне çĕклесси. Чăваш халăхĕ пурăнакан регионсенче пур çĕрте те çак ыйтусене ăнланса йышăнасса, вĕсене тивĕçлĕ шайра татса парасса шанас килет.

Ку тĕлĕшпе, çавăн пекех пĕтĕмĕшле культура ыйтăвĕсемпе пирĕн Ульяновск облаçĕн ертӳçисемпе тачă çыхăнмалла, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн статусне çĕнĕ шайра çирĕплетсе тăратас енĕпе пĕрле вăй хумалла.

Шансах тăратăп, ку ыйтăва татса парăпăр, мĕншĕн тесен ку чухнехи чăваш культури Чĕмпĕрте çĕнĕрен чĕрĕлсе аталанма пуçланă. 1868 çулта унта И.Я. Яковлев гимназист Чĕмпĕрти чăваш шкулне уçнă, чăвашсемшĕн вăл аталану центрĕ пулса тăнă. Чĕмпĕрти шкултан паллă поэтсемпе писательсен пысăк ушкăнĕ вĕренсе тухнă. Çав шутра Тайăр Тимкки, Николай Шупуççынни, чăваш кино ăсталăхне аталантарнă Иоаким Максимов-Кошкинский, Никифор Охотников педагог, пултаруллă тата ытти нумай-нумай çын. Чăваш халăхĕ илемлĕ чăваш литературипе поэзи никĕсне хывнисен ячĕсене – Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишшине чĕререн тав туса, сума суса пурăнать. Çавăн пекех чăваш халăх поэчĕсем Петĕр Хусанкай, Ухсай Яккăвĕ, Çемен Элкер, халăх писателĕсем Александр Алга, Алексей Талвир, Илпек Микулайĕ, Влас Паймен, Леонид Агаков тата ыттисем те литературăра тарăн йĕр хăварнă.

Чăваш наци аталанăвĕн историйĕнче И.Я. Яковлев мĕн тери пысăк вырăн йышăннине хаклама йывăр. Ку вăл тăван халăхăн чи лайăх ывăлĕсемшĕн чун-чĕрене хумхантармалла тăрăшни, чăваш шăпишĕн шухăшлани. Унăн халалĕсемпе канашĕсене тепĕр хут аса илни ытлашши пулмасть пулĕ.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш кĕнеки анлăн сарăлса пырать. Чăваш театрĕ аталанать. Хамăрăн музыкантсем вĕренсе ӳсеççĕ. Чăваш писателĕсемпе поэчĕсен произведенийĕсене чикĕ леш енче кăлараççĕ, тĕнчери выставкăсенче чăваш художникĕсем ӳкернĕ ĕçсене кăтартаççĕ.

Паян пирĕн республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсене чăвашла кăларнă вĕренӳпе методика литературипе тата илемлĕ литературăпа тивĕçтерес ыйтусемпе çав тери тимлĕ ĕçлемелле.

Правительствăн Шупашкарта культурăпа çут ĕç валли пысăк квалификациллĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе культурăпа искусство институтне уçас ыйтăва татса памалла. Наци ăнланулăхне тивĕçлĕ шая çĕклес, халăха тăван историпе, культурăпа тата чĕлхепе ытларах интереслентерес тесен республикăра культурăна аталантармалли патшалăх программине йышăнмалла. Унта вара чăвашсем йышлă пурăнакан регионсенче наци культурин центрĕсене, наци кухнине, библиотекăсемпе клубсем, шкулсем, чăваш хаçачĕсемпе журналĕсен тата телерадиовещании корреспондент пункчĕсем, кружоксемпе ĕçлеме кирлĕ пӳлĕмсем, пысăках мар хăна çурчĕсем, пĕчĕк предприятисем уçма кирлине палăртса хăвармалла.

Наци районĕсене тата наци ял Совечĕсене çĕнетсе лайăхлатмалли майсем пирки те шухăшламалла. Унччен çавнашкал наци пĕрлешĕвĕсем пулнă.

Чăваш Республикинче наукăсен академийĕсене туса хунă, 4 наука тĕпчев институчĕ ĕçлет. Кирек хăш наци пирки те унăн культурине тата наукăри çитĕнĕвĕсене кура хаклаççĕ. Чăвашсем тĕнче культурине аталантарас ĕçре сахал мар вăй хунă. Пĕтĕм совет культури пур енлĕ хĕснĕ пулин те вĕсем хăйсем тĕрĕс пулнине яланах ĕненнĕ. Паянхи форум чăвашсен культура пуянлăхĕн хăйсене евĕрлĕхĕпе çыхăннă ыйтăва çĕнĕлле пăхса тухма тивĕçлĕ. Эпир авалхи тĕрĕк халăхĕсенчен пĕри пулнине тĕпе хумалла. Тĕнче уçлăхĕнче наука тĕлĕшĕнчен пысăк çитĕнӳсем тăвас ĕçе кунта ларакан хисеплĕ Андриян Григорьевич Николаев анлă хутшăнни пирки те каласа хăвармалла. Çавăн пекех Конгресс ĕçне пирĕн паллă писательсем, художниксем, ăслăлăх ĕçченĕсем – чăваш халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсем Геннадий Волков, Василий Давыдов-Анатри, Николай Терентьев, Вера Кузьмина, Ревель Федоров тата ыттисем те хутшăнаççĕ. Пурне те асăнса та пĕтереймĕн.

Хисеплĕ туссем тата тăвансем! Пирĕн наци теорипе практика юхăмĕнче чăваш халăхне тата республикăна аталантармалли çул-йĕр пирки тĕрлĕ шухăш калаççĕ. Çав шутра Раççейрен тухма сĕнекенсем те, политикăпа экономикăри ыйтусене хамăр тĕллĕн татса панине хирĕç калакансем те пур.

Пирĕн шутпа, Чăваш Республикин пĕртен пĕр тĕрĕс çул-йĕрĕ – çывăхри тата инçетри халăхсемпе туринпе те Раççейре туслă пурăнасси, республикăна демократи, хăй тĕллĕнлĕх условийĕсенче тата пĕрлехи экономикăна хутшăнса аталантарасси.

Нумаях пулмасть пирĕн çĕр çинче Раççей Федерацийĕн ертÿçисем мĕн пур регионсене ертсе пыракансемпе тĕл пулу ирттерчĕç. Унта пĕтĕм халăхпа суйланă Президент та хутшăнчĕ. Ку вăл республикăна, çавăн пекех чăваш халăхне Центр çеç мар, нумай нациллĕ Раççейре пурăнакан халăхсем шаннине кăтартса пачĕ. Ку вăл – пирĕн наци мăнаçлăхне сума суни тата пирĕн проблемăсене ăнланни.

Хаклă туссем! Паян Конгресс резолюцисемпе ытти документ проекчĕсене сÿтсе явĕ тата йышăнĕ. Вĕсем чăваш нацине аталантарас ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ тапхăр пулса тăрĕç тата малашне вĕсене Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем пур енлĕн шута илсе ĕçлĕç.

Çав документсене конструктивлă, ĕçлĕ лару-тăрура сÿтсе явас килет. Пĕтĕм этемлĕх цивилизацийĕн философине тĕпе хурса, хамăр наци пĕрлехи пурнăç философийĕн концепцине палăртса хатĕрлес шухăшпа пурте килĕшеççĕ пулĕ. Конгреса ăнăçлă ĕçлеме, тухăçлă тĕл пулусем ирттерме ырă сунатăп.

## ТУРАТ ÇУМНЕ ТУРАТ ХУШАТПĂР

### А.П. Хусанкай çум доклачĕ

*Шав-шав вăрман, ай, шав, вăрман, –*
*Мĕншĕн шавлать çав вăрман?*
*Турат çумне турат хушасшăн.*
*Шав-шав халăх, шав халăх,*
*Мĕншĕн шавлать çав халăх?*
*Чун çумне чун хушасшăн.*

Самана лăпкă мар, пăтрашуллă... Çулталăк çитет аслă Совет Союзĕ текен патшалăх арканса кайнăранпа е, тĕрĕсрех каласан, ăна салатса янăранпа. Совет Союзĕнчи Раççей тавра вырнаçнă союзлă республикăсем кĕске вăхăт хушшинче никама пăхăнман патшалăхсем пулса тăчĕç, тĕнче тытăмĕнчи, тĕнче шайĕнчи хăйсен вырăнне шырама пуçларĕç. Тĕлĕнсе каймалла, анчах вăл та чăнлăх. Пысăк пĕлтерĕшлĕ çак событисем – империи арканни, тĕрлĕ халăхсем хăйсен ирĕкне çĕнсе илни, Раççей Федерацийĕнче хăйĕнче наци-ирĕк юхăмĕсем вăй илни тата сарăлни чăваша хускатман, чăваш хăйĕн лăпкă пурнăçĕпе пурăнать, тăрăшсах ĕçлет, хăй аллипе, тарпа тунă ĕçĕн пайтине çав-çавах кураймасть. Совет Союзĕ халĕ çук пулсан та – Раççей тытăмĕнче те пирĕншĕн пурнăç йĕрки питех улшăнман, пĕтĕм улшăну япăх еннелле кăна. Эпир ăна кашни кун туйса тăратпăр.

Паянхи кунччен те чăваш лăпкă пурăнни, паллах, хăйĕн сăлтавĕ пур. Эпир, чăвашсем, историсĕр халăх мар. Хальхи самант – Чăваш наци конгресĕ пухăннă аслă кун – хамăр пăлхар-чăваш историйĕ çине çаврăнса пăхни те ытлашши пулмĕ. Паллах, çак историе пире шкулта вĕрентмен, эпир чăваш ĕмĕрĕ 1917 çултан пуçланнă тесе шутлаттăмăр. Анчах тăван халăхăмăр Тухăç Европăн истори çырăвĕнче тарăн йĕр хăварнă. Хура тинĕспе Каçпи тинĕсĕ хушшинче Аслă (Ылтăн) Пăлхар патшалăхне йĕркеленĕ, кайран тĕлĕнмелле шалти вăй халăхăн пĕр пайне Дунай юхан шывĕн хутлăхне хăвалать, пăлхарсен тепĕр пайĕ вара çурçĕрелле тапса ыткăнать. Историйĕмĕрĕн пăлхар пин çуллăхĕ – Хусан ханлăхне кĕриччен. Пÿлĕх пире шăпах пин çул уйăрса панă – вăл пирĕн асăмра çук пулсан та питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ун чухне чăваш-пăлхар ирĕклĕ пулнă, пирĕн асаттемĕрсем Атăлпа Кама хушшине килсе Тăван çĕр-шывне çĕнсе илнĕ, хуçалăхпа хăй еверлĕ культура никĕсне хывнă, ирĕклĕн аталаннă. Чăваш историйĕн хыççăнхи тапхăр – ирĕклĕхе çухатнă вăхăт. Патшалăхăмăра аркатнă, пăлхар-чăвашсем хăйсен Тăван çĕр-шывне çухатнă. Ирĕк хусканăвĕ чăваш çыннин ун чухне шала кайнă тĕрлĕ хăрушлăхĕсене хирĕç тăма кирлĕ пулнă, хавшаса пынă, урăхла каласан, чăваш чунĕ 7 ĕмĕре яхăн тăсăлнă чуралăхра ирĕлет, йăвашланать, çав йăваш туйăмпа эпир паянхи кунсене кунлатпăр, чăваш шăпи пирки пуçăмăрсене вататпăр.

Мĕншĕн-ха паян çак аваллăха шухăшăмпа путрăм? Мĕншĕн тесессĕн хальхи лару-тăру, чĕлхемĕрĕн пурнăçри вырăнĕ, чăн-чăн суверенлă Чăваш патшалăхне тăвас ĕç, чăваш наци культурине çĕнĕ сыпăка хăпартас ĕç халĕ те кун йĕркинче. Эпир халĕ те, поэт калашле, «Чăваш çĕр-шывĕнче пурăнатпăр, чăваш чĕлхишĕн çапăçса...» Аваллăха аса илни IX ĕмĕртен пуçласа шăпамăр чăваша Атăлпа Урал тăрăхĕпе çыхăнтарать, чăваш кунта тĕпленет, çĕр ĕçне тухăçлă туса пырать, килти выльăха ĕрчетет, вăрман касса çурт-йĕр хăпартать, кунта пурăнакан ирçе, мăкшă, мари, тутар, пушкăрт тата удмурт, каярахпа вырăс халăхĕсемпе, туслă, килĕштерсе пурăнма тытăнать. Атăлпа Урал халăхĕсен туслăхĕ ĕмĕрсем витĕр тухнă, паянхи кун та чĕрĕ эпир, пĕр-пĕрне сывăх туйса пурăнатпăр. Пире çыхăнтараканни – историпе культура пĕрлĕхĕ, чĕлхемĕрсен тачă çыхăнăвĕсем.

Эпир пурте Раççей варринче пурăнатпăр, пирĕн умра тăракан çивĕч ыйтусене пĕр-пĕрне ăнланса, таччăнрах çыхăнса кăна татса пама пултаратпăр. Экономика йывăрлăхĕсене çĕнтерме, социаллă ыйтусене тивĕçтерме, чĕлхемĕрсене, культурăмăрсене упраса хăварас тата аталантарас ĕçе пĕрле туса пырсан кăна эпир çак кризисран, хальхи йывăр лару-тăруран тухайăпăр. Эппин, Атăпа Урал тăрăхĕнчи суверенлă республикăсен, облаçсен килĕшÿсем хатĕрлесе çитермелле, вĕсене çывăх вăхăтрах алă пусмалла. Пирĕн кăсăклăх çак вырăнти дипломати ĕçĕнче питех те пысăк, мĕншĕн тесен чăваш халăхĕн тĕп пайĕ, 80-85 процент е 1 миллион çурăна яхăн чăваш, çак хутлăхпа пурăнать, кунта чăваш нацийĕ тĕп халăхсенчен пĕри пулса тăрать. Халăхăмăр çак тĕп вырăнта XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çуррипче наци пулса чăмăртаннă, социаллă пусмăра тÿссе хăйсене евĕр йăли-йĕркине тата наци культурине упраса хăварма пултарнă. Çав вăхăтрах кунтанах, Тĕп тăван килтен, тухса кайма, тĕрлĕ истори сăлтавĕсене пула тĕнче касса çÿреме тивнĕ мăнтарăн чăвашăн. Çĕнĕ çĕрсене çитсе пирĕн маттур чăваш, паллах, аптраман, ĕççĕр ларман. Ăçталла çул тытнă-ха чăваш? Хальхи Раççей Федерацийĕн картти çине пăхсан чăваш пурăнман вырăн, тен, тупаймастпăр та: Çĕпĕр чăвашĕсем, Инçет Хĕвел тухăçĕнче Сахалин утравне çити, Çурçĕрти Пермь, Тюмень облаçĕсем, Коми республики, Ханты-Манси автономи округĕ... тата нумай-нумай çĕрте пирĕн йăхташăмăрсем пурăнаççĕ. Никам пăхăнман патшалăхсенче те чăваш йышлă пурăнакан вырăнсем сахал мар, тĕслĕхрен, Казахстанпа Вăтам Азире, Украинăпа Балти тăрăхĕнче. «Инçех те çулсене пирĕн çывăх тăвасчĕ, хамăр тăвансене курас тесе», – халăх юррипче юрланă пек. Анчах майсем çукрах. Сапалантăмăр тĕнче тăрăх, нумай нуша тÿсетĕр эсир, тăванăмăрсем, чăваш чĕлхине те манатăр хăш чух, чăваш кĕнеки, чăваш ÿнерĕ, юррипе театрĕ те çитеймест сирĕн пата. Анчах паян мехел çитрĕ, эпир пĕрле пухăнтăмăр. Чăваш Республикин тĕп хулинче Шурă Шупашкарăмăрта пĕр пысăк йыш, пĕр халăх, пире тăванлăх туйăмĕ пĕтĕçтерет. Эпир мĕскĕн мар, ăслă-тăнлă çынсем пулса паян çак Аслă пухăва пуçтарăнтăмăр. Йĕркеллĕ, тивĕçлĕ шайра чăваш халăх аталанăвĕн тĕп çул-йĕрне, культурăпа чĕлхе малашлăхне, Чăваш Республикин чăн-чăн суверенитетне, наци пĕрлĕхне палăртма тата çирĕплетсе хăварма.

Эпир, çак залра ларакансен тĕп пайĕ, хисеплĕ хăнасемсĕр пуçне, чăваш халăхĕн тулли праваллă делегачĕсем, çак ыйтусене лартма тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен Чăваш наци конгресĕ – чăвашăн чи Аслă пухăвĕ, Аталану, наци пĕрлĕхĕ, чăваш чĕрĕлĕвĕ унăн тĕп тĕллевĕсем пулса тăраççĕ. Пирĕн халăхăмăр умĕнче тăракан ыйтусем питĕ нумай, вĕсене эпир, паллах, икĕ кун хушшинче татса параймăпăр, анчах Чăваш наци конгресĕ вăл чăваш халăхĕн ялан ĕçлекен чи çÿлти органĕ пулмалла. Пирĕн ăна паян çирĕплетмелле, ертсе пыракансене суйласа хăвармалла.

Çавăнпа пирĕн калаçу ĕçлĕ тата витĕмлĕ пултăр тесен Чăваш наци конгресне хатĕрлекен йĕркелÿ комитечĕ сире валли, хаклă тăванăмăрсем, документсен пуххине тыттарчĕ. Вĕсем пурте сирĕн аллăрта пур: вырăсла («Чăвашьен» хаçатăн хушма кăларăмĕнче) тата чăвашла (ĕнерхи «Хыпар» хаçатра). Кама, мĕнле чĕлхене вулама, тишкерме çăмăлрах, çак чĕлхепе вулатăр, тишкертĕр. Пирĕн калаçу шăнăрĕ çак документсем тавра пултăрччĕ, вĕсене пирĕн сÿтсе явмалла, паян-ыран йышăнса хăвармалла.

Çак документсене эпĕ икĕ ушкăна пайланă пулăттăм. Пĕрисем – Чăваш патшалăх (Чăваш Республики) аталанăвĕпе çыхăннă декларацисем тата йышăнусем. Мĕншĕн çак ыйтусем, пирĕн шутпа, пысăк пĕлтерĕшлĕ? Эсир пĕлетĕр ĕнтĕ, пирĕн республика, ытти малтан

автономисем пулнӑ республикӑсем пекех, 1990 ҫулхи юпа уйӑхӗн 24-мӗшӗсенче Патшалӑх суверенитечӗ ҫинчен калакан деклараци йышӑннӑ, урӑхла каласан, ирӗклӗн аталанакан, экономикӑпа финанс йӗркине хӑй тӗллӗн тытса пыракан, пӗтӗм харпӑрлӑха хӑй аллинче тытакан патшалӑх пулнине пӗлтернӗ. Ҫапла майпа эпир хамӑр патшалӑх статусне хӑпартрӑмӑр, анчах, шел пулин те, ҫав хӑй тӗллӗнлӗх (суверенитет) правипе эпир туллин усӑ курмастпӑр. Пирӗн патшалӑх вӑл хальлӗхе тулли мар, пирӗн ӑна туса ҫитермелле. Суверенитет текенни кунта пурӑнакан чӑвашсене е урӑх республика гражданӗсене кӑна мар, вӑл тулай чӑвашсене те кирлӗ пек туйӑнать. Мӗншӗн тесен Чӑваш Республикисӗр пуҫне ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинче чӑваш валли урӑх ятарлӑ патшалӑх тытӑмӗ ҫук, ку – пӗртен пӗр, Чӑваш ҫӗр-шывӗ – пирӗн тӑван кил, пирӗн шанӑҫ, ҫавӑнпа та ӑна пӗтӗм чӑваш халӑх вӑйӗпе ҫирӗплетмелле. Геннадий Никандрович Волков, хисеплӗ академикӑмӑр, калашле, «Пирӗн тӑван ҫӗр-шыв та ҫук», тен, ун пек каланинче чӑнлӑх пур, анчах пирӗн Чӑваш Республикинех ҫӗнӗ хӑват парса, ӑнах хамӑрӑн Тӑван ҫӗр-шыв тӑвасах пулать. Инҫетри чӑваш тӑванӑмӑр Чӑваш ҫӗр-шывӗнчех хӳтлӗх, тӑванлӑх ӑшши туптӑр, кунтан пулӑшу илтӗр, кунта пурӑнакан чӑвашсемпе пӗрле хурлантӑр, савӑнтӑр. Чӑваш Республикин суверенитетне аталантарма ҫӗнӗ Конституци (Тӗп Саккун) кирлӗ-и? Паллах, кирлӗ. Хальхи Конституци кивелнӗ, паянхи пурнӑҫа тивӗҫтермест. Гражданлӑх саккунӗ, шалти тата тулашри наци политикине тытса пыракан патшалӑх комитечӗ, республика чиккинчен тухса, чӑвашсем йышлӑ пурӑнакан ҫӗрсене ҫитекен предприниматель ӗҫӗ, сывӑ экологи лару-тӑрӑвӗ. Ҫак йышӑнусем питӗ кирлӗ, унта палӑртнӑ ыйтусене татса памасан эпир ахаль облаҫ шайӗнчен ҫӳле хӑпараймастпӑр.

Чӑваш наци конгресӗн тепӗр ушкӑна кӗрекен йышӑнӑвӗсем халӑха вӗрентес ӗҫпе, наци кадрӗсене хатӗрлессипе, массӑллӑ информаци хатӗрӗсемпе, чӑваш наци кӗнекине кӑларас енӗпе, кино искусствине аталантарассипе ҫыхӑннӑ. Ҫак ыйтусем уйрӑмах республика тулашӗнче пурӑнакан чӑвашсене тивеҫҫӗ. Халӑха чӑмӑртакан вӑй – культурӑпа информаци пӗрлӗхӗнче. Пӗр-пӗринчен татӑлса пурӑнатпӑр пулсан, пирӗн хушӑмӑрта темиҫе пин ҫухрӑм выртать пулсан ҫак пушӑлӑха ҫӗнтермелле, чунпа ӑс-хакӑл апатне инҫетри тӑвансем патне ҫитермеллех.

ЧНК тивӗҫӗ – ҫак ыйтусемпе Раҫҫей Федерацийӗн ертсе пыракан органӗсен ячӗпе тухасси, унта ларакан патшалӑх ҫыннисене хускатасси. ЧНК умӗнче тӑракан тепӗр пысӑк ӗҫ – тӗрлӗ тӗнчери (правительствӑн мар) организацисемпе ӗҫлесси, чӑваш ыйтӑвӗсене унта сӳтсе явасси. Ку енӗпе те пирӗн хӑнӑхмалла, хамӑр ирӗксене хӳтӗленӗ чух тӗнчери право нормисемпе килӗшӳллӗн ӗҫлеме тытӑнма вӗренес пулать. Ҫак ӗҫре пире ООНра тӑман халӑхсен тата нацисен пӗрлешӗвӗ пысӑк пулӑшу тата витӗм пама пултарать. Ҫак пӗрлешӗве кӗрес тесе пирӗн ятарлӑ, пӗтӗм пуҫтарӑннӑ делегат ячӗпе, йышӑну ҫирӗплетмелле. Чӑвашлӑха тӗп вырӑна лартатпӑр пулсан–вӑл пӗтӗм этемлӗх хаклӑхӗсене хирӗҫлемест, тӗнче ӑс-хакӑл пӗлӗвӗпе пирӗн ҫиелтен кӑна мар, тӗплӗн паллашмалла. Чӑваш кӗтессинче кӑна хупӑнса лармалла мар, нумай енлӗ ҫыхӑнусене аталантарасах пулать.

Хам сӑмахӑма вӗҫленӗ май ҫапах та шухӑша путатӑп: ӑҫталла выртатьши чӑваш ҫулӗ? Тӗнчери тӗрӗксем мӑсӑльман тӗнӗ тавра пӗрлешеҫҫӗ, чӗлхисен пӗр пеклӗхӗ те вӗсене питӗ ҫыхӑнтарать. Пирӗн ҫывӑх кӳршӗсем – мари, ирҫе, мӑкшӑ – ытти финн-угор халӑхӗсемпе пӗрле пуласшӑн. Эпир вӗсене те хӑш-пӗр енӗпе ҫывӑх тӑратпӑр, тӗрӗк тӗнчине те манмастпӑр. Юлашки вӑхӑтра чӑваш чӗлхи пулса кайни ҫинчен хаҫат-журналта тем ҫырсан та чӗлхемӗр тымарӗ тӗрӗклӗх патнех туртать. Нимӗн те тӑваймӑн. Ҫав вӑхӑтрах чӑвашӑн – уйрӑм ҫул. Вӗсене йывӑр, пире тата йывӑртарах. Пирӗн нкиама та шанмалли ҫук. Хамӑр вӑйпа, Чӑваш наци конгресӗ пек аслӑ ниме пухса эпир тем те пултармалла-ҫке.

Чӑваша хӑйсене пӗрлештерекен ӑнлавсен (идейӑсем) йышне ҫаксене кӗртес килет:
– (1) Тӑванлӑх – ку вӑл сӑвапллӑ таса туйӑм: халӑх вӑл ҫул пуҫ та, пӗр пысӑк йыш-ҫемье те:
– (2) Танлӑх – эпир пур халӑхсемпе тан пуласшӑн.

*«И мӗн пуян, тӑванӑм?*
*Халӑх пуян.*
*Унсӑр пуҫне кама пуҫ таян».*
Мисҫа Ваҫлейӗ

– (3) Килӗшӳ (грекла) (гармони) – ҫут ҫанталӑкпа килӗштерсе пурӑнмалла, чӑваш ун йӗркине нихӑҫан та пӑсман, хисеплесе тӑнӑ.

Пурнан пурнӑҫра тем те пулать. Хамӑр ӑнланулӑха та ҫухатрӑмӑр е ҫухатса пыратпӑр, чӑвашлӑха та малашлӑхра мар, аваллӑхра шыратпӑр – ун пек вара вӑл чӗрӗ пулмасть, нумай япаларан шикленетпӗр е вӑтанатпӑр.

Кашни халӑхах, ҫӗр ҫинчи мӗн пур чӗрӗ япала пекех, пурӑнма, малалла аталанма ӗмӗтленет. Хӑйӗн вӑрӑм историйӗнче савӑнӑҫне те, хура-шурне те сахал мар курнӑ чӑваш халӑхӗ те, тоталитарлӑ импери тытӑмӗн халӑхсене хирӗҫле наци политикин сӗрӗмӗ сирӗлнӗ май, хӑй ҫине урӑх куҫпа пӑхма пуҫларӗ. Чӑваш халӑхӗ чухӑн халӑх мар. Ун пиншер ҫул пуҫтарӑннӑ, упраннӑ ӑс-хакӑл мулӗпе чун-чӗре пуянлӑхӗ пур – ҫут ҫанталӑкпа тачӑ ҫыхӑнса тӑракан тӗнче курӑмӗ – философийӗ, хӑйсене евӗр культури.

Чӑвашсем – ӗҫчен те тирпейлӗ, сӑпай та тӳсӗмлӗ халӑх. Вӑл кӳршисемпе мирлӗ, килӗштерсе пурӑнма, ытти халӑхсене хисеплеме пӗлет. Республикӑра пурӑнакан ытти мӗн пур халӑх ҫыннисем, Чӑваш наци конгресӗн пӗлтерӗшне тӗрӗс ӑнланса, чӑвашсемпе пӗр чӗлхе тупса, пирӗнпе пӗрле савӑнасса шанатпӑр.

Чӑваш халӑхӗн нуши сахал мар. Пирӗн республикӑра ун ҫурри ҫеҫ пурӑнать, 1 миллион ытла чӑваш тӗнче тӑрӑх саланнӑ. Патшалӑхӑмӑр тулашӗнче пурӑнакан чӑваш наци культура интересӗсене тивӗҫтерме, ҫивӗч ыйтӑвӗсене татса пама чи малтанах пирӗн республикӑн пулӑшмалла.

Тӗп чӑваш килӗнче хӑйӗнче те татса паман ыйтусем самаях пуҫтарӑннӑ. Республика суверенитетне ҫирӗплетмелле, чӗлхемӗр сахал мар хут тӳсрӗ – ӑна чӗрӗлме, ҫӗнӗ хӑват илме пулӑшмалла, тӑван культурӑна хӑйсене евӗр чӑваш сӑнне каялла тавӑрма, ӑна ҫӗнӗ пурнӑҫ пама тӑрӑшмалла. Наци конгресӗ ҫак паха туйӑма тата чӑвашлӑха ҫӗнӗ сывлӑш вӗрсе кӗртессе шанас килет.

Чӑвашӑн хӑйӗн килӗнче хӑйсене чӑн-чӑн хуҫа пек туйма та вӗренмеллеха. Ҫакӑнсӑр эпир тӑван ҫӗр-шыва малалла аталантараймӑпӑр, хальхи йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе ура ҫине ҫирӗп тӑраймӑпӑр. Республика тӗреклӗхӗнчен мӗн пур чӑваш шӑпи ҫеҫ мар, кунта пурӑнакан ытти халӑхсен кун-ҫулӗ епле пуласси те килет.

Чӑвашсем, тӑвансем, республикӑра пурӑнакан ытти мӗн пур халӑх ҫыннисем! Эпир сире Чӑваш наци конгресӗн йышӑнӑвӗсене таса кӑмӑлпа, тӗплӗн шухӑшласа ӑнланма ыйтатпӑр. Тавтапуҫ сире тимлӗ итленӗшӗн.

*«Хыпар», 1992, юпа, 9, 202 №.*

## ЧӐВАШ КӖНЕКИ ЙЫВӐРЛӐХРА

### И.Д. Вутлан ҫум доклачӗ

Хаклӑ хӑнасем!

Атӑл тӑрӑхӗнче, авалхи Урал ҫумӗнче, ҫавӑн пекех Алтай, Ҫӗпӗр, Инҫет Хӗвел тухӑҫ ҫӗрӗсенче, ютра (чикӗ леш енче) пурӑнакан икӗ миллионлӑ чӑваш халӑхӗн ывӑлӗ-хӗрӗсем икӗ пинмӗш ҫул вӗҫӗнче хӑйсен пӗрремӗш наци Конгресне ирттерме аслӑ Атӑл хӗрринче, Шупашкарта, пухӑнни тата ҫак шайра иртни мана, чӑваш ҫыравҫисене, ҫав тери савӑнтарчӗ.

Чи малтанах эпӗ тӑван халӑхӑн ҫак Аслӑ пухӑвне йӗркелесе ирттерекенсене чун-чӗререн тав тӑватӑп.

Эпӗ ҫирӗп шанса тӑратӑп: халӑх конгресне килнӗ хӑнасем тӗрлӗ ыйтусемпе тухса калаҫӗҫ, чӑваш ҫӗрӗн экономикине, культурине, наукине

малалла аталантарас енӗпе усӑллӑ сӗнӳсем парӗҫ, мӗншӗн тесен пурнӑҫра ҫитменлӗхсем, тумалли ӗҫсем мӑй таранах.

Эпӗ хам Чӑваш кӗнеке издательствин ӗҫӗ-хӗлӗ пирки чарӑнса тӑрасшӑн, мӗншӗн тесен, ман шутпа, кӗнеке – халӑх ӑс-хакӑлӗн тӗп никӗсӗ. Ӑна упрассишӗн кашни чӑвашӑн тӑрӑшмалла.

Юлашки ҫулсенче, уйрӑмах 1988 ҫултан пуҫласа, Чӑваш кӗнеке издательстви кӑларакан наци литературин калӑпӑшӗ ӳсни палӑрчӗ. Ҫак тапхӑрта издательствӑн тематика планӗнче чӑваш кӗнекисен тӳпи 2 хут ытла ӳссе 52 процента ҫитрӗ. Издательство ҫав вӑхӑтра тупӑшлӑ ӗҫлерӗ, коммерци литератури кӑларса хӑйӗн тӑкакӗсене саплаштарчӗ.

Анчах та 1992 ҫулӑн пӗрремӗш ҫурринче патшалӑх валли ятарлӑ, социаллӑ пӗлтерӗшлӗ литература кӑларасси чылаях юлса пыма тытӑнчӗ, унӑн калӑпӑшӗ чакрӗ. Чи пысӑк сӑлтав кунта ҫакӑ: хут, картон, ытти материалсем, типографи илекен хаксем ҫав тери ӳссе кайрӗҫ. Ача-пӑча, наци литератури, справочниксен тиражӗ чакрӗ. Унсӑр пуҫне издательствӑна 26 миллион лист-оттисклӑх вырӑнне 13 миллион лист-оттисклӑх анчах хут уйӑрса пачӗҫ. Дотаци вара 12 миллион вырӑнне 5 миллион тенкӗ кӑна илнӗ.

Ҫакна пула талантлӑ чӑваш ҫыравҫисен чылай произведенине 1992 ҫулхи тематика планӗнчен 1993 ҫулхи тематика планне куҫарма лекрӗ. Мӗншӗн тесен чӑваш кӗнекисем издательствӑна кӳрекен тӑкаксем юлашки вӑхӑтра ҫав тери ӳссе кайрӗҫ. Акӑ, сӑмахран, 20 листа калӑпӑшлӑ проза кӗнекине 10 пин экземпляр тиражпа кӑларас пулсан вӑл издательствӑна 456 пин тенкӗ тӑкак кӳрет. Ҫав кӗнекен пӗр экземплярӗ 10 тенкӗ тейӗпӗр (унтан ытларах хакпа ӑна илмӗҫ). Ун чухне те ҫав кӗнеке издательствӑна 380 пин тенкӗ тӑкак кӳрет. 5 листаллӑ поэзи кӗнекине 2 пин тиражпа кӑларсан издательствӑна 110 пин тенкӗ тӑкак пулать. Акӑ мӗнле хака кайса лараҫҫӗ чӑваш кӗнекисем.

Ҫапла вара ҫак кӑткӑс лару-тӑрура, рынок условийӗсенче, наци издательстви патшалӑх пулӑшӑвӗсӗр пурӑнма пултараймасть. Тепӗр хут калатӑп: патшалӑх пулӑшмасан пирӗн ӗҫ арканать. Ҫакна шута илсе республикӑн 1992 ҫулхи бюджетне йӗркеленӗ чухне эпир издательство валли 12 миллион тенкӗ дотаци уйӑрма ыйтрӑмӑр. Анчах та пире 4 миллион та 901 пин тенкӗ кӑна пачӗҫ. Ку ыйтупа темиҫе хут та Аслӑ Советра, Министрсен Советӗнче, Финанс министерствинче пултӑм. Шел пулин те – вӗренӳ литературине кӑларма кӑна пире ҫителӗклӗ укҫа уйӑрса пачӗҫ.

Кӗнеке кӑларасси япӑхланни наци литературин тиражӗсем чакнинчен те, кӗнеке сутакан организацисем издательствӑна укҫа тӳлесе татайманнинчен те килет. Кӑҫалхи юпа уйӑхӗн 1-мӗшӗ тӗлне, сӑмахран, ҫав организацисем издательство умӗнче 1 миллион та 490 пин тенкӗ парӑмра тӑраҫҫӗ.

Издательствӑн финанс енӗпе лару-тӑру кӑҫалхи иккӗмӗш ҫур ҫулта та лайӑхланмасть. Ҫавна май Чӑваш Республикин Министрсен Совечӗ, эпир сӗннипе, Раҫҫей Федерацийӗн Пичетпе информаци министерствине ҫыру ячӗ. Вӗрентӳ, ача-пӑча, наци литератури тата тӗрлӗрен справочниксем кӑларма тӗллевлӗ дотаци 6 миллион та 600 пин тенкӗ уйӑрса пама ыйтрӑмӑр. Авторсене гонорар тӳлеме укҫа ытларах кирлине палӑртрӑмӑр. Мӗншӗн тесен гонорар шайӗ ытла та пӗчӗк. Анчах та ку ыйтӑва татса панӑ теме май ҫук. Шел пулин те, хамӑр республикӑра та кӗнеке ыйтӑвне пур чухне те кирлӗ пек татса памаҫҫӗ. Ку вӑл, ман шутпа, хӑш-пӗр пуҫлӑхсем кӗнеке тӑван халӑхӑн ӑс-хакӑл пуянлӑхӗ, унӑн никӗсӗ пулнине ӑнланманнипе ҫыхӑннӑ. Ҫакӑ, икӗ миллионлӑ халӑх валли ҫителӗксӗр кӗнеке кӑларни – сиенлӗ тата намӑсланмалли япала.

Пӗр пӗчӗк тӗслӗх кӑна илсе кӑтартатӑп. 30 ҫул каялла ялсенче лаша тӑп-тулличчӗ, анчах паян пӑхӑр-ха ял ҫине. Унта куҫлӑхпа мар, космоса хӑпарса оптика прицелӗпе шырасан та лаша шыраса тупаймастӑн. Шупашкар хушшинчи пӗр илемлӗ лаптӑкра, Ҫӗнӗ Салапа юнашар, ятарласа ӑйӑрсене ӑмӑртма, те шкул темелле ӑна, те уйрӑм хуҫалӑх турӗҫ. Укҫа та пур, тем те пур ҫак йӑнӑша тӳрлетме: финанс министрӗ те, ял хуҫалӑх министрӗ те ҫак ыйтӑва ир пулсан та, каҫ пулсан та татса пама хатӗр. Анчах кӗнеке пирки? Хӑҫан улшӑнӗ-ши ҫанталӑк? Ҫапах та министрӗ те, заместителӗсем те пирӗнпе алла-аллӑн тытӑнса ӗҫлеме пуҫласса питӗ шанас килет манӑн. Тӗрӗссипе, ӗҫӗ пуҫланчӗ те.

Чӑваш Республикин Пичетпе информаци патшалӑх комитечӗ кӑҫалхи августра пичетпе кӗнеке кӑларас ӗҫе хӳтӗлес, пулӑшас тӗллӗшпе постановлени проекчӗ хатӗрлерӗ, ӑна Чӑваш Республикин Министрсен Советӗнче пӑхса тухма тӑратрӗ, сентябрь уйӑхӗнче вара Чӑваш Республикин Аслӑ Советне «Рынок хутшӑнӑвӗсене куҫнӑ чухне патшалӑх наци кӗнекине хӳтӗлесси ҫинчен» постановлени проекчӗ хатӗрлесе пачӗ.

Хӑш-пӗр сӗнӳсене йышӑнни сисӗнме тытӑнчӗ. Кӗнеке ыйтӑвне нумай пулмасть Аслӑ Совет Председателӗ Э.А. Кубарев патӗнче писательсемпе пӗрле сӳтсе яврӑмӑр. Кӗҫех издательствӑна правительство пуҫлӑхӗ В.Н. Викторов пымалла.

Кӗнеке кӑларас ӗҫе кризислӑ лару-тӑруран хӑтарас тесен, ман шутпа, ҫак Конгресра акӑ мӗн тумалла.

Пӗрремӗшӗ. Чӑваш Республикин Аслӑ Совечӗн тата правительствин кӗнеке кӑларас, ӑна сутас ӗҫе хӳтӗлес, пулӑшас енӗпе мерӑсем йышӑнтармаллах, пире тӗнче аваӑрӗнче ҫухалса кайма ан паччӑр вӗсем.

Иккӗмӗшӗ. Чӑваш кӗнеке издательствин, полиграфи предприятийӗсен, кӗнеке сутакан организацисен коллективӗсен хӑйсен те наци кӗнекине кӑларас ӗҫе лайӑхлатас, ҫак йывӑр вӑхӑтра пӗтсе ларас мар тесе хытӑрах тӑрӑшмалла, кирлӗ майсем шырамалла. Ҫакна тӑвас тесен чи малтан чӑваш халӑхне, унӑн чӗлхине юратмалла, чӑвашлӑхшӑн тӑрӑшмалла, кӗрешмелле.

Виҫҫӗмӗшӗ. Чӑваш Республикин Писательсен союзӗн чӑваш кӗнекине кӑларма фонд тӑвас енӗпе пуҫаруҫӑ пулмалла, мӗншӗн тесен 1993 ҫулта наци кӗнекисене кӑларма 45 миллион тенкӗрен кая мар дотаци кирлӗ.

Тӑваттӑмӗшӗ. Республикӑри Хресченсен союзне ял хуҫалӑх литератури тата ялти чӑваш ачи-пӑчи валли кӗнекесем кӑларас тӗллӗшпе укҫа-тенкӗ тупма тата уйӑрма ыйтасшӑн.

Пиллӗкмӗшӗ. Финанс министерствин тата социаллӑ хӳтлӗх министерствин ача-пӑча валли литература кӑларма укҫа-тенкӗ уйӑрас енӗпе татӑклӑ решени йышӑнма ыйтасчӗ.

Улттӑмӗшӗ. Чӑвашсем йышлӑ пурӑнакан районсенчи, ытти республикӑсемпе облаҫсенчи администрацисен чӑваш кӗнекисене хӑйсен регионӗсенче сарас енӗпе хастарлӑрах ӗҫлемелле, тӗрлӗ майсем шырамалла.

Чӑваш кӗнекине кӑларассине аталантарас ӗҫ чылай ҫынна интереслентерет. Хаҫатсемпе журналсенче критикӑллӑ материалсем те часчасах тухаҫҫӗ. Анчах та чылай чухне ку материалсенче чӑваш кӗнекин йывӑрлӑхӗсене тӗплӗн ӑнланманни сисӗнет.

Ҫак Конгресра чӑваш кӗнекин кун-ҫулӗ пирки тӗплӗн шухӑшламалла, калаҫмалла.

*«Хыпар», 1992, юпа, 9, 202 №.*

## КОНГРЕСС ФОНЧӖ ПУЯНЛАНТӐР

### Н.В. Пыркин ҫум доклачӗ

Конгреса килнӗ делегатсен географине тишкерсен – чӑваш халӑхӗ тӗнче уҫлӑхӗнче сапаланнӑ ҫӑлтӑрсене аса илтерет. Карталаннӑ ушкӑнсенче вӗсем сахал, нумайӑшӗ тӗрлӗ кӗтессенче тӑлӑххӑн курӑнать. Вӗсем кометӑсем ӳксе ҫуннӑ пек хӑйсен чӑвашлӑхне ҫухатмӗҫ-ши? Паян ҫитӗнекен ҫамрӑк ӑру аслашшӗпе асламӑш чӗлхине, йӑли-йӗркине маннине курсан ку ыйту чӑнах та кашнин чӗрине хумхантарма тивӗҫ.

Чӑвашлӑха упраса хӑварассишӗн чун-хавалне шеллемен ӑслӑ ҫынсене пӗтӗҫтерсе пыракан, чӑваш халӑхне пур енӗпе те тӗнчери чи аталаннӑ патшалӑхсен халӑхӗн шайне ҫитерессишӗн ырми-канми ӗҫлекен тытӑм – Конгресс – паян ҫуралать. Хутаҫ ҫакса ҫӳрекен ыйткалакан пек мар, улӑп пек ҫуралса, хӑварт вӑй илсе анлӑ ҫула тухтӑр вӑл.

Конгресс пуласлăхне, унăн шалти тата тулашри ĕçне йĕркелесе пыракан саккун – Устав пулмалла. Унăн проекчĕпе нумайăшĕ паллашрĕç пуль ĕнтĕ. Ăна сире салатса панă. Çавăнпа та Уставăн кашни пайĕпе (вĕсем улттă) паллаштарма кирлĕ мар.

Ман шутпа, çак уйрăмлăхсене палăртмалла.

Пĕрремĕшĕ. Чăваш наци конгресĕ парти мар, обществăлла организаци, анлăрах каласан – мĕн пур чăвашсен юхăмĕсене, ĕç тата ытти ушкăнсене пĕрлештерсе тăракан аслă пухăвĕ. Вăл паян-ыран ĕçлекен организаци çеç мар, яланах ĕçлекен организаци.

Иккĕмĕшĕ. Конгресс чăвашсен ушкăнпа пурăнакан кашни регионăн ертсе пыракан органĕсемпе таччăн ĕçлеме, чăвашсен интересĕсене, прависене хӳтĕлеме тивĕçлĕ. Паллах, хирĕçӳ çуратса мар, тăванлăха çирĕплетсе, пĕр-пĕрне сума суса, ăнланса...

Конгреса хатĕрленнĕ май тĕрлĕ вырăнти пуçлăхсемпе калаçма тӳр килчĕ. Вĕсем чăвашсем ĕçчен, сăпайлă, тараватлă, килĕшӳллĕ пулнине чи малтан палăртаççĕ. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăннине мĕн çиттĕр? Ахальтен мар Конгресăн пулас гимнĕнче те кун çинчен уçăмлă каланă.

Виççĕмĕшĕ. Уставра Конгресăн коллективлă членĕсем пулма пултарассине палăртнă. Хальхи саманара ку уйрăмах кирлĕ. Çакă конгреса куллен кун вăй парса тăма тивĕç.

Кăна эпĕ кăшт каярах тĕслĕхсемпе çирĕплетме тăрăшăп.

Тăваттăмĕшĕ. Конгресăн пур енĕпе те тачă çыхăнса ĕçлекен структура пулать: республикăсемпе облаççен шайĕнче те, ялсемпе хуласен шайĕнче те.

Манăн çакна палăртса хăварас килет (йăнăшсем сахалтарах тăвас шутпа). Пур шайри ертсе пыракан органсенче те халĕ чăвашсене çеç лартма тăрăшни сисĕнет. Кăна сивлесшĕн мар эпĕ. Анчах хамăр ĕçе ытти халăхсен çыннисене те хутшăнтарнин усси пысăкрах пулмĕши? Кашни регионăн хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Вĕсене шута илмеллех ĕнтĕ.

Нацин тĕп тытăмĕ чĕлхе пулни паллă, анчах унпа çеç çырлахса ытти енсене, çул-йĕрсене манас марччĕ.

Уставра пурне те палăртса хăварма май çук, пурнăç пуянрах та, кăткăсрах та. Ăна лайăххах сиплеме, пуянлатма эсир калană сĕнӳсем пулăшĕç. Ман шутпа, Аслă Совета Конгресра палăртнă тĕрлĕ шухăшсене шута илсе Устава тĕрлĕ улшăнусем кĕртме право памалла.

Кĕскен Конгресс фончĕ çинчен.

Чăваш патшалăх Правительстви йышăннипе (июль уйăхĕнче) Чăваш наци конгресĕн фондне йĕркеленĕ. Унăн тĕп тĕллевĕсем: конгреса хатĕрленсе ирттерсе ярасси, наци аталанăвĕпе çыхăннă ĕçсене туса ирттерме укçа-тенкĕпе пулăшса пырасси.

Фонд Правительство çумĕнче пуласси, ман шутпа, малашне те сыхланса юлмалла. Фондăн расчет счечĕ, пичечĕ пур.

Фонда йĕркеленĕренпе вăхăт питĕ сахал иртрĕ. Турра шĕкĕр, ĕçĕн пахалăхĕ тата калăпăшĕ вара пĕчĕккĕ тесе каласшăн мар эпĕ. Акă паянхи куна фондăн укçи 3 миллион та 200 пин тенкĕрен ытларах.

Фонд урлă эпир Конгресăн, чăваш халăхĕн чăн тусĕсене уççăн куратпăр. Камсем пире чĕререн хисеплеççĕ, камсем çине эпир таянма пултаратпăр. Вĕсен хушамачĕсене, коллективсен ячĕсене кунта каламаллах пулĕ тетĕп.

Вĕсене алă çупса Конгресс тав тусан та йăнăш пулмĕ.

Трактор тăвакан завод 350 пин тенкĕ панă.

Таймапуç, чĕререн тавтапуç сире, Ханиф Хайдарович Мингазов – завод директорĕ.

200 пин тенкĕ ытла укçа куçарнă коллективсем: пир-авăр комбиначĕ – пуçлăхĕ Василий Александрович Заворзаев, Чапаев ячĕпе хисепленекен завод – пуçлăхĕ Геннадий Иванович Хорошев, «Электроника» суту-илӳ çурчĕ – пуçлăхĕ Вячеслав Леонарьевич Андреев, Чăвашпотребсоюз правленийĕпе хатĕрлев бази – Владимир Анатольевич Гладышевпа Петр Михайлович Мрзуков, приборсем тăвакан завод (150 пин тенкĕ) – пуçлăхĕ Глеб Андреевич Ильенко, Раççейĕн Наци комитечĕ (председателĕ Валерий Александрович Тишков) – 392 пин тенкĕ.

Пурне те каласа пĕтерейĕмĕн. Вĕсене хаçат урлă кăтартăпăр. Пурне те чĕререн тавтапуç.

Хăнасене те тав тăвасшăн. Пире Тутарстан Президенчĕн аппарачĕ кĕске вăхăтра делегатсем валли сувенирсем тума пулăшрĕ (РАСМА – Татарстан фирми урлă – пуçлăхĕ Люция Абдулхановна Толоконникова). Çакăнтăн Тутарстан делегацине тавтапуç. Зур рехмет, иптешлер.

Шанас килет: Чăваш наци конгресĕн фончĕ наци аталанăвĕнче пысăк вăй пулĕ.

## ЧĂВАШ ТĔНЧИ – ВЫШКАЙСĂР АСЛĂ!
### В. Станьялăн Конгресра каламан сăмахĕ

19-мĕш ĕмĕр хаяр пуласси халех палăрса тăрать. Сăлтавĕсем тĕрлĕ – çут çанталăк тăвăнса çитни, наци хутшăнăвĕсем пăтранса пыни, çĕр-шыв Хĕвел анăç урапи çине ларса сиктерни, пуянлăхпа чухăнлăх хапхисене уçса яни... Идеологи тата политика пăтравĕ кирек хăçан та юнпа вĕçленет.

Тухатса хунă çак çаврашкаран чăваш халăхĕ пăрăнса юлма пултарать-и? Çук, пĕтĕмпех пăрăнаяс çук, мĕншĕн тесен ку вăл – пĕр юхăмри ĕç, хĕвел системинчи планетăсен çулĕ пекех. Анчах этемлĕх ăс-хакăлпа хăватлă, вăл хăйĕн шăпине хăех чĕлпĕрлесе пыма пултарать.

Чăваш чĕлпĕрне паян хăш еннелле туртмалла-ши? Иккĕленмесĕрех паллă: тăван чĕлхе, йăла-йĕрке, çирĕп йĕркеленӳ, кӳршĕ-аршă халăхсен ĕçлĕ туслăхĕ, чĕмсĕрлĕхрен тухни.

Чăваш халăхĕ чĕмсĕр пулнин сăлтавĕ паллă: чĕнсен касса ыватнă. Тайма пуçа хĕç витменни хăтарса хăварнă пирĕн йăх-тăхăма, 7 ĕмĕр каялла Атăлçи Пăлхар патшалăхне мăнă хулсем пăвса пăрахнă, унтан вырăс империйĕн «вак» халăхсене хĕстерекен чышки хăратса тăнă. Совет тӳри-шари, сăмахпа хресчен енче пек калаççан та, Чăваш облаçне хĕрлĕ тăмлă çырмана персе чикнĕ. Çавăнпа эпир паян пуринчен сахал шалу илетпĕр, пуринчен нумай çуран утатпăр, ĕçлетпĕр вара акари лаша пек, çиетпĕр çĕр улми, тăхăнатпăр фуфайка. Ĕçлени çылăх мар, ĕçленине харама яни намăс. Ĕçченнине пула чăвашран Хĕвел протуберанцĕсем пек хăватлă этемсем сиксе тухаççĕ, анчах вĕсене тăван халăхĕ хӳтĕлеймест. Тĕслĕхне Иакинф Бичуринра, Спиридон Яндушра, Константин Ивановра, Çеçпĕл Мишшинче, аслă реформатор-педагогра Владимир Матвееврa тата ытти пин-пин çынра тупма пултаратпăр. Кусем пурте – ют пусмăр касса татнă талантсем, тăван халăхĕ хӳтлĕх парайман пирки тӳперен персе антарнă çутă çăлтăрсем. Пирĕн таса çăлтăрсене татах пере-пере антарĕç-ха. Антармĕç теме ан васкăр. Шанчăклă хӳтлĕх халĕ те тăваймастпăр. Çав хӳтлĕх – патшалăх ирĕкĕнче, суверенитетра. Халăх хăйĕн хуçалăхри тата ăс пурлăхри кредичĕпе дебетне куллен виçме вĕренсен тин хамăрăн пурнăç мĕн хак тăнине, мĕн ырă, мĕн усал иккенне тĕрĕс курма пуçлăпăр.

***

Пурсăмăрăн та чакми ыратăвăмăр – тăван чĕлхе управлăхĕ. Тĕнче тĕлĕнтермĕшĕ – чĕлхемĕре пылчăка пăрахрăмăр: чăвашлăха, унпа пĕрле хамăр сăн-сăпата çухатрăмăр. Чăваш чăваш пулма пăрахнăшăн вырăс улпучĕ е тутар мăрси айăплă маррине çамка çине картса хумалла. Чăваша чăваш сутăнчăклăхĕ кăшлать. Пирĕн паян вырăса та, тутара та, еврее те, çармăса та пуç тайса, хамăрăн килти манкуртсене ăса кĕртмелле. Малтан хамăр кил-çурта тасатмалла, вара тин пире пуканелле вылятма пăрахĕç.

Чăвашлăха вăйлататпăр тени вăл чăваш чĕлхине çеç вĕренетпĕр,

чăвашпа кăна хутшăнатпăр тени мар. Паянхи пирĕн задача: кашни кĕтесрех наукăсен, экономикăн, хутшăнусен мĕн пур отраслĕсене аталантарма, ертсе пыма, йĕркелеме пĕлекен аслă пĕлӳллĕ чăваш ӳсмелле. Ăслă чăваш ачи сахалтан та 4 чĕлхепе калаçма, хутшăнма пултарсан çеç аталаннă халăхсен картине кĕретпĕр. Акăлчанла-французла е урăх пĕр анăç чĕлхи тата тухăçри тепĕр чĕлхе: ахăртнех, тутар чĕлхи. Тутарла пĕлни – тухăç тĕнчине пĕлни, Турцие, Азербайджана, Кăркăсстана, Казахстана тăлмачсăрах кайса çӳрессине систерет. Пирĕн тĕслĕхсем çителĕклĕ – Чăваш Республикинче 4 чĕлхеллĕ ялсем чи маттур ăстасене çуратаççĕ. Илĕр Виçпӳрт Шăмăрша, илĕр Ирçе Çармăса, илĕр Юнкăпуçне – Илпек, Евсевьев, Янтуш çĕр-шывĕсене...

Апачушки! Тăвасса чĕлхе мар, хамăрăн чĕлхене те пĕлмеççĕ хальхи мăнттайсем тесе ан ахлатăр, тархасшăн. Пиçнĕ-пиçмен пашалусем чăвашла пĕлменшĕн хурланса çунатсене усăсăр усса ларас мар. Çӳреччĕр хăйсен кăйттă ăсĕсемпе. Амăшĕ ăс парайман пулсан кача-ка сĕчĕпе ăс кĕреймĕ. Кайран хăйсемех ашшĕ-амăшĕн алăкĕ умне пуçĕсене пĕксе килĕç. Паллах, тăван çĕр хăйĕн тăрлавсăр ачисене те шеллетех ĕнтĕ, анчах ку вăл – йĕрĕнсе шеллени. Халăх ăс-пуçĕ, халăх пурнăçĕ чăвашлăха çухатнисем çинче тытăнса тăмасть. Çавăнпа усалтĕселе тасатма, пăрăнса иртме пĕлни аванрах та пулĕ.

Чăваш чĕрĕлĕвне, унăн ытти халăхсен хушшинчи тан сумне таса та хастар çамрăксен кăна малалла яма пултараççĕ. Малашлăх – вĕсенче. Аслă ăру хăй сăмахне каланă. Унăн чи шанчăклă ывăлĕ-хĕрĕ халăха лачакана антарса ярасран упраса пурăннă. Аслă ăрури пичче-пикесем, тав сире Аслă Пуху умĕнче, пысăк тав хальччен чăтса çĕнтернĕшĕн.

Уççăнлăхпа пĕрле яш ăру ешĕл çырана тухрĕ. Тăвалла-и, анаталла-и е ниçталлисĕр таçталла утмалла? Каялла сиктерес текенсем те пур. Турра шĕкĕр, хальччен вĕсене наци хастарĕсем чиперех аяккалла сирсе пычĕç.

***

Конгреса хатĕрленнĕ çĕрте вĕчĕх политика вăййисем самаях чăрмантарчĕç. Ним тума та çук – культурăпа вĕрентӳ ĕçĕ политика вăйăмĕнчен нихçан та пачах тухма пултараймасть. Тен, çав хирĕçлетӳ хăвачĕ пурри те сире сӳтсе явса йышăнма сĕннĕ документсене самаях тĕплĕ хатĕрлеме май пачĕ. Тем тесен те, Конгресс резолюцийĕсемпе декларацийĕсем чăваш саккунлăхне самаях пуянлатаççĕ тесе шутлатăп. Çирĕплетсех калама пултаратăп: культура, чĕлхе, кулленхи йăла çине таянса, халăх чунне çутатакан политик Чăваш Элтеперĕн суйлавĕнче чылай ансатрах çĕнтерме пултарĕ.

Çапла курăнать мана Чăваш конгрессменĕсен чĕлхепе культура тавра çаврăнакан мал ĕмĕтлĕ шухăшĕ. Тулай чăвашсем пирки мĕн шутлатьши Конгресс? Тем калăр та, диаспорăна кирлĕрен кирлĕ шанчăк – чăмăртану. Çыхман турат шăпăр мар – вăл ни шăлма, ни таянма. Анчах çыхма та çук пĕр тĕвве: ку шухăша Ленин вăхăтĕнчех калле-малле сăвăрса пăхнă. Ытла та инçе сапаланнă чăваш, пĕр тинĕсрен тепĕр тинĕс таран! Анчах асăрхăр-ха: пачах та ăнсăртран, тĕлли-паллисĕр сапăнман вăл Европăпа Ази кăкăрĕ çине, шăрçа ярăмĕ пек выртать чăвашлă çĕр аслă Раççей варринче! Балти хĕрринчен Беринг тинĕсĕ патнех пырать чăваш ялĕсемлĕ 56-мĕш параллель. Ку параллеле Чăваш çулĕ тесех каламалла. Мускав, Хусан, Екатеринбург, Омск, Челябинск, Красноярск хутлăхĕсем – ĕне усрама, тырă ӳстерме, пахча чĕртме юрăхлă çĕр. Таврара мĕнле халăх пур – вĕсем çак тăрăхпа çыхăну тытаççĕ. Тухăçпа Анăç хушшинчи чукун çулсем, автомагистральсем, хамăрлатса каласан, чăваш çĕрĕпе иртеççĕ. Эппин, эпир вышкайсăр пуян халăх, питех те ăслă асаттесен тăна кĕрсе пыракан ачисем. Çак пысăк территорие пирĕн туртса илме те, чикĕ палли çапма та кирлĕ мар. Хĕр парса хĕр илмелле пирĕн Калининградран пуçласа Камчатка таран!

Тулай чăвашĕсен умĕнче наци округĕсем, районĕсем, ял Совечĕсем йĕркелесси çивĕч тăрать. Çав чăваш хутлăхĕсем вĕçрен вĕçе янă шăрçа çыххи пек курăнса кайĕç, аслă Раççей анлăшне хăйсен ĕçчен ĕлккенлĕхĕпе илем кӳрĕç. Анчах çакна тулай чăваш хăй тумалла!

Халăх – пĕр чĕрĕ организм. Вăл пĕрлешсе тăракан савăтсем пекех – пĕр çĕрте шăтсан икĕ савăчĕ те вуçех юхса тухать. Савăтран савăта куçасчĕ, савăтне нихçан та шăтарас марччĕ. Ăнланмалла каласан – кунта нумайййине сире шайлаштарса парăпăр, сирĕн ытлашшине пире пама ан хĕрхенĕр. Шупашкарта хĕр нумай, сирĕн ялта яш нумай, мĕн-ма евчĕ ярас мар? Сирĕн патра çĕр нумай, пирĕн патра йыш нумай, мĕн-ма сирĕн урама пирĕн куçса пырас мар? Çапла шăкăл-шăкăл пурăнма чикĕ çапни кирлĕ-и? Паллах, кирлĕ мар. Чикĕ мар пире пĕрлештерет, халăха ĕмĕт, чун хавалĕ, тăванлăх туйăмĕ çывăхлатать. Кирек ăçта пурăнсан та – пире кĕр-кĕрлесе ĕçлеме, ниме туса çĕкленме, алă çапса хаклашма май тупăнчĕ: Аслă Пуху пурне те тăванлăх çулĕпе уттарасшăн.

Конгресс Уставĕ пĕрлĕх çулĕпе аталанма хистет, хушать, ыйтать. Эппин, сире, халăх суйланă делегатсем, пурне те Пĕрлĕх элчисем тесе калама ирĕк парăр. Конгрессмен-элчĕсем! Чăн-чăн малтан тăван сăмах шкулĕсене – ача усравăшĕпе пахчине, вырсарни шкулне, пуçламăш классене, вăтам шкулсене, училищĕсемпе техникумсене, музыка, сăмахлăх, суту-илӳ тата ытти тĕрлĕ гимназии-лицейсене уçмаллах! Ĕпхӳ, Чĕмпĕр, Самар, Хусан чăваш факультечĕсем патне çитеççех! Ан васкăр, анчах мăранланса та пурăнар марччĕ.

Халăх чунĕнче манăçмасăр упраннă йăла-йĕркене вăйлатмалла: килти, ялти вăхăт уявĕсем пĕрлĕхшĕн те, ăспа туйăм тасалăхĕшĕн те сывлăш пекех кирлĕ.

Ниме йĕрки – пирĕн пурнăç тыткăчи, мĕншĕн ялта ниме пуçĕсем юлмарĕç? Элле, эпир çав тери пуйса çитрĕмĕр-и е çав тери çука тăрса юлтăмăр-и? Хутаçпа кĕлмĕçленсе çӳрес килмесен суту-илӳ тума хамăрăнах вĕренес пулать, тĕнчене тухса вĕренесчĕ. Çав çула тупма Аслă Пуху самай пулăшатех. Ахальтен-и С.Н. Падюкова шыраса тупрăмăр?

Чăваш халăхĕ Раççей тытăмĕнчи тусан çӳппи мар. Вăл хăйĕн шалти çирĕплĕхне, тасалăхне, чăтăмне çухатман. Ятне çĕртмен. Кахала тухман. Пирĕн пĕтĕм истори, чĕлхе, тĕрĕ, тĕн, талайăмăр хамăра пĕр шиклентермесĕрех аслă халăх теме хушать. Сĕмсĕре сĕмсĕрпе хирĕç çапайманни, пуçтаха пуçпа тавăрманни, «чăваш та халăх!» тесе калайманни текех ан пултăр. Çак Конгреса ирттерни пирĕн чуна чĕрĕлĕх кĕртмеллех! Конгресс сасси – халăхăн тупа сасси. Пур, пулнă, пулатпăр анчах мар, ыттисемпе тан пулатпăр–çапла пирĕн паянхи лозунг!

Тулай чăваш! Пылчăкпа тулнă çăл куçĕсене тасатар-ха, манăçа юлнă йăласене ас тăвар-ха, ача-пăчамăра атте-анне чĕлхине пиллер-ха. Пархатарĕ пулатех тесе калатăп.

Тăван республикăри чăваш! Хăвăн чĕппӳсем таçта аякра сас параймасăр çухалса çӳреççĕ. Аса ил вĕсене, кайса кур, чĕнсе хănала. Ачашласа ăс пар, тархасшăн. Таталми хутшăну пирĕн малашлăх çулне якатмаллах!

Тăван чĕлхе, тăван йăла-йĕрке, нимеллĕ хутшăнусем, алла-аллăн тăвакан ĕç – çак сăмахсене Конгресс кĕнекине мала çырса хутăмăр. Тĕрĕс турăмăр-и?

*«Хыпар», 1992, юпа, 9, 202 №.*

# ĔНЕР ЧĂВАШСЕН АСЛĂ ПУХĂВĔ ХУПĂНЧĔ

## Пуху чăваш халăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ тĕллевсем палăртрĕ

*Тĕнчипе сапаланса пурăнакан чăвашсем Наци конгресĕн президентне Атнер Хусанкая суйларĕç.*

*Юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче, кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче, Чăваш наци конгресĕн делегачĕсем, тăвасса ушкăна пайланса, И. Яковлев, К. Иванов, Çеçпĕл Мишши тата В. Ленин палăкĕсем умне чĕрĕ чечексем хучĕç.*

Аслă Пуху президиумне Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчен килнĕ делегаци «çул пуç» палăкĕ умне те чĕрĕ чечексем хурасси пирки хут çырса панă. Ленин 1920 çулта Чăваш автономине туса хурасси çинчен калакан йышăнăва алă пусса çирĕплетнине вĕсем çапла сума сăвасшăн иккен. Делегатсен ытларах пайĕ кӳршĕсен сĕнĕвне йышăннă.

Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Председателĕ Э. Кубарев туса панă доклада тата çум докладсене сӳтсе явнă хушăра Конгресăн йĕркелӳ комитечĕн председателĕн заместителĕ **В. Станьял** Конгресс делегачĕсене

саламласа, вӗсене ӗҫре ӑнӑҫу тума сунса янӑ телеграммӑсемпе паллаштарчӗ. Ӑҫтан кӑна килмен-ши вӗсем: Канадӑри И. Антонов чӑвашран, Турцирен, Венгрирен, США-ран, Германире пурӑнакан Геннадий Айхи поэтран, Чӑваш Наци академийӗн хисеплӗ членӗнчен Питер Франсран, Молдова Президентӗнчен М. Снегуртан...

Раҫҫей Аслӑ Совечӗн Президиумӗн членӗ **Н. Медведев** Федераци халӑхсен культурине аталантарас тӗлӗшпе тоталитарлӑ тапхӑрта питӗ ҫителӗксӗр ӗҫленине, нацисемпе халӑхсен чӗрӗлӗвне вӑй парас тӗллевпе Раҫҫей Аслӑ Совечӗ ятарлӑ концепци туса хатӗрленине, сак-кунсем йышӑннине палӑртрӗ. Кашни регионтах халӗ наци ӑнланулӑхӗ вӑйлӑ аталаннӑ. Общество организацийӗсем те, политика партийӗсем те хастар хутшӑнаҫҫӗ ҫав юхӑма. Анчах вӗсем наци ыйтӑвӗсене татса парас ӗҫре официаллӑ органсемпе тачӑ ҫыхӑнура мар. Ҫак залра, эпӗ пӗлнӗ тӑрӑх, – терӗ Медведев, – партисемпе юхӑмсенчен те делегатсем пур. Апла пулсан асӑннӑ ыйтусене пӗрле татса парасшӑн. Ку питӗ лайӑх. Ытти ҫӗрте ҫакӑн пеккине кураймӑн. Ахальтен мар ӗнтӗ кӳршӗ республикӑсемпе облаҫсем сирӗн ҫине тимлӗрех пӑхма тытӑнчӗҫ. Нумаях пулмасть акӑ Шупашкарта Раҫҫейри канашлуирттертӗмӗр.

Чылай ҫӗрте нацисем хушшинчи хутшӑнусем сирӗнни пек мар. Кабардин- Балкар, Чечен республикисенче пачах урӑхла, терӗ оратор. Халӑхсене хирӗҫӳсем патне илсе ҫитерес марччӗ. Атӑлпа Урал хушшинчи регионсенче вӗсем ҫукки питӗ савӑнтарать-ха, анчах хирӗҫӳсем пӗчӗк сӑлтавсенченех сиксе тухма пултараҫҫӗ.

Малалла Чӑваш Республикин Наукӑсен академийӗн президенчӗ **Л. Кураков** хӑй ректор пулса ертсе пыракан Чӑваш патшалӑх университечӗ ӑслӑлӑхпа чӑваш культурине аталантарас тӗлӗшпе юлашки вӑхӑтра мӗнле ӗҫсем туса ирттерни ҫинчен каласа пачӗ. Хальхи вӑхӑтра унта культура ӗҫченӗсене те хатӗрлеҫҫӗ, тӗпчевҫӗсем наука диссертацийӗ хӳтӗлеме пултараҫҫӗ. Ку вӗренӳ ҫулӗнче ытти университетсене вӗренме пӗлтӗрхинчен 30 процент сахалрах илнӗ пулсан, ЧПУна вара пӗлтӗрхинчен ытларах йышӑннӑ. 59 проценчӗ – чӑвашсем. Чикӗ леш енчен килнӗ ҫамрӑксене пӗлӳ панӑшӑн куҫарса паракан укҫа-тенкӗн пӗр пайне чӑваш ачисем валли гимнази уҫма ямашкӑн палӑртнӑ, терӗ вӑл. Республика тулашӗнчи 50 чӑваш ҫамрӑкне кӑҫал чӑваш филологийӗпе культурин факультетне тата ытти специальноҫсемпе вӗренме кӗмешкӗн хатӗрлев курсне илтӗмӗр. Ҫак ӗҫе туса пыма Чӑваш патшалӑхӗнчен пӗр пус та илместпӗр. Пӗтӗмпех хамӑр шутран. Университет издательствинче малашне чӑвашла кӗнекесем кӑларма тытӑнасшӑн.

Аслӑ Пухӑвӑн мандат комиссийӗн председательне **А. Кириллова** сӑмах пачӗҫ. Унӑн докладӗнчен делегатсем ҫакна пӗлчӗҫ:

Залра пин ытла ҫын: 882 делагат тата 200 яхӑн хӑна. Аслӑ пуху ӗҫӗне чӑваш халӑхӗн чи паллӑ ывӑлӗсемпе хӗрӗсем – писательсем, артистсемпе художниксем, ӑслӑлӑхпа техника интеллигенцийӗ – хутшӑнаҫҫӗ: Чӑваш халӑх поэчӗ Василий Давыдов-Анатри, Чӑваш халӑх писателӗсем Хветӗр Уяр, Лаврентий Таллеров, Анатолий Емельянов, РФ халӑх артисчӗ Филипп Лукин композитор, СССР халӑх артисчӗсем Вера Кузьмина, Валерий Яковлев, РФ халӑх артистки Нина Григорьева т.ыт.те.

Чӑваш наци конгресне хутшӑнма Андриян Григорьевич Николаев космонавт-летчик ятарласа килнӗ.

Делегатсен шутӗнче – тӗнчипе паллӑ тӗпчевҫӗсем Г.Н. Волков, М.Р. Федотов.

Залра 783 арҫын тата 99 хӗрарӑм делегат. 50 ҫула ҫитменнисем, ҫамрӑксен йышлӑ. 6 наука докторӗ. 874 чӑваш, 5 вырӑс, 3 тутар, пӗрер ирҫепе эвенк.

Аслӑ пуху делегатсен прависене тата мандат комиссийӗн докладне ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн Америкӑран килнӗ **С.Н. Падюков** чӑваш, Раҫҫей халӑх художникӗ **В.И. Мешков** (Красноярск крайӗ), Чӑваш Республикин Хӗрарӑмсен совечӗн председателӗ **И.И. Стекольщикова**, **И.Г. Тарасов** (Пушкӑрт Республики) делегатсем сӑмах илчӗҫ, Чӑваш халӑх культурине, чӗлхине, чӑвашлӑха вӑйлатса, аталантараса пыма кирли ҫинчен каларӗҫ.

Кун хыҫҫӑн делегатсене Азербайджан, Беларуҫ, Пушкӑрт, Марий Эл, Тутар республикисенчен, Самар облаҫӗнчен килнӗ представительсем саламларӗҫ, асӑннӑ регионсемпе Чӑваш Республики хушшинчи экономикӑпа культура ҫыхӑнӑвӗсене ҫирӗплетсе пыма кирлине, наци ыйтӑвӗсене пӗр-пӗринпе канашласа татса памаллине, халӑхсем хушшинчи туслӑха ҫирӗплетмеллине палӑртрӗҫ.

Президиум председателӗ пӗлтернӗ тӑрӑх – Конгресс ячӗпе янӑ телеграммӑсенче тата ҫырусенче **Конгреса Пӗтӗм тӗнчери чӑвашсен Аслӑ пухӑвӗ тесе пӗлтерме ыйтаҫҫӗ.** Делегатсен хушшинче те ҫавнашкал шухӑш калакансем пулчӗҫ. Ҫакна шута илсе президиум председателӗ Конгресс Пӗтӗм тӗнчери чӑвашсен Аслӑ пухӑвӗ тесе шутлакан делегатсене мандат хучӗсене ҫӗклеме ыйтрӗ. Аслӑ пуху унӑн сӗнӗвне пӗр саслӑ пулса йышӑнчӗ. Ҫапла вара Конгресс статусӗ пысӑкланчӗ.

Чӑваш Республикинчен инҫетре пурӑнакан делегатсем Шупашкара хӑйсен нушисем ҫинчен каласа пама килнӗ. Ҫавӑнпа Аслӑ пухӑва ертсе пыракан чи малтанах вӗсене сӑмах парасси ҫинчен пӗлтерчӗ. Ҫакна хирӗҫлекен пулмарӗ.

Питӗ йывӑр-ҫке вӗсен пурнӑҫӗ. Лару-тӑру республика тулашӗнче пачах урӑхла. Раҫҫейӗн, ытти ҫӗр-шывсемпе халӑхсен витӗмӗ калама ҫук вӑйлӑ. Ҫак пурнӑҫра йӑваш чӑваша хӑйӗн йӑли-йӗркине тытса пыма пӗртте ҫӑмӑл мар. Ҫавӑнпа пулӑшмалла вӗсене. Кунта чи малтанах Чӑваш Республикин пысӑк ӗҫсем тума палӑртмалла. Ҫапла пулчӗ инҫетри тӑвансен шухӑшӗ.

Чӑваш ҫамрӑкӗсен Ҫеҫпӗл Мишши ячӗпе хисепленекен премийӗн лауреачӗ **Валери Туркай** поэт хӑйӗн чӑваш халӑхӗн йӑли-йӗркине тытса пурӑнма, тӑван чӗлхене куҫ пек упрама, чӑвашлӑх туйӑмне вӑйлатма, хӑюллӑ пулма, ирӗклӗх патне талпӑнма чӗнекен сӑввине вуласа парсан нумайӑшӗн куҫӗсем шывланчӗҫ.

Ҫирӗм ытла делегат тухса каланӑ хыҫҫӑн Аслӑ Пуху унта пӑхса тухма палӑртнӑ документсене хатӗрленӗ ушкӑн тата Конгресӑн редакци комиссийӗ сӗннӗ резолюцисене сӳтсе явма пуҫларӗ. **Григорьев** делегата Чӑваш наци конгресӗн Уставӗнче ЧНК общество организацийӗ пулнӑ май ӑна Раҫҫейӗн, Чӑваш Республикин, чӑвашсем йышлӑ пурӑнакан ытти республикӑсен, облаҫсен, крайсен бюджетӗнчен укҫа-тенкӗ уйӑрасси пирки калани иккӗлентерет. Ҫакна вӑл пулма пултарайман япала вырӑнне хурать. Асӑннӑ комисси председателӗ **А. Хусанкай** ҫапла ӑнлантарса пачӗ:

– Уставра асӑннӑ патшалӑхсен Конгреса укҫа-тенкӗ уйӑрса тӑмалла тесе ҫирӗплетсе каламан, уйӑрма пултараҫҫӗ тенӗ. Григорьев тӗрӗсех палӑртать: пурнӑҫ улшӑнса пынӑҫемӗн Устава улшӑнусем кӗртмелле пулӗ. Ҫавӑнпа Конгресӑн Кӗҫӗн Канашне Устава улшӑнусем кӗртмешкӗн ирӗк парса хӑвармалла.

Аслӑ пуху ҫак сӗнӗве йышӑнчӗ. Унтан Чӑваш наци конгресӗн статусӗ, чӑваш халӑхӗн наци чӗрӗлӗвӗ ҫинчен калакан декларацисем, Чӑваш Республикин Конституцийӗн (Тӗп Законӗн) концепцийӗ, Наци политики енӗпе ӗҫлекен патшалӑх комитечӗ, Чӑваш наци конгресӗ ООН-ра тӑман нацисемпе халӑхсен пӗрлешӗвне чӑваш халӑхне хӑйӗн членне йышӑнма ыйтасси тата «Ирӗклӗх» радиостанцие чӗнсе калани ҫинчен резолюцисем йышӑнчӗ.

Ульяновск облаҫӗнчен килнӗ пӗр делегат Чӑваш Республикин «Гражданлӑх ҫинчен» законӗн принципӗсем ҫинчен калакан резолюципе тимлӗрех пулма сӗнчӗ. Вӑл Чӑваш Республикин гражданинӗн статусне илес тесен «республика территорийӗнче ялан пурӑнакан вӑхӑт пилӗк ҫултан кая мар пулмалла» тенӗ сӑмахсемпе килӗшменни ҫинчен пӗлтерчӗ. **И. Иванов** тата **Г. Архипов** делегатсем «Республикӑна пурӑнма куҫса килекен кашни чӑваша тӳрех гражданлӑх прави памалла, вӑхӑтне пилӗк ҫул тесе палӑртмалла мар» тесе тӳрлетӳсем кӗртнӗ хыҫҫӑн Аслӑ пуху асӑннӑ резолюцие йышӑнчӗ.

**В. Егоров** делегат Чӑваш Республикин патшалӑх суверенитечӗ ҫинчен

калакан резолюцие Чăваш Республикин пĕр çăл куçлă бюджет пулмалли çинчен сыпăк кĕртме сĕнчĕ. Анчах унăн шухăшне Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Председателĕ **Э. Кубарев** тӳрех пӳлчĕ: «Эпир Раççее пĕр миллиард паратпăр, иккĕ илетпĕр. Миллиардпа пурăнаятпăр-и?»

Раççей Аслă Совечĕн Президиумĕн членĕн **Н. Медведевăн** çакăн пирки калаçу тапрансан сăнĕ-пичĕ питĕ улшăнчĕ. Аслă пухура пăхса тухма сĕннĕ документсенчен хăшĕ-пĕри Раççей Конституцийĕпе килĕшсе тăмасть тенĕ чухне шăпах çав ыйтусене шута илнĕ пулмалла вăл. Пĕлетпĕр, Мускав регионсен пĕр çăл куçлă бюджечĕсемпе ниепле те килĕшме пултараймасть. Çавăнпа та пулĕ унăн элчисем юлашки вăхăтра республикăсемпе облаçсене час-часах кайса çӳреççĕ.

**И. Иванов делегат:**

– В. Егоров экономист республика бюджетне пĕр çăл куçлă тума сĕннине резолюцие кĕртме ыйтатăп. Эдуард Алексеевич, Эсир Раççее миллиард паратпăр, унтан иккĕ илетпĕр тени вăл чăвашсем хăйсене хăйсем тăрантарса пурăнаймаççĕ тенине пĕлтерет. Çаплах пулсан чăваш халăхĕ Раççее сăхса, çисе пурăнать пек пулса тухать. Енчен те эпир, чăвашсем, ĕçлеме пĕлместпĕр пулсан, Раççей мĕншĕн пире хăйĕн тытăмĕнчен ярасшăн мар?

**А. Хусанкай** çапла хуравларĕ:

– Асăннă резолюцин пиллĕкмĕш сыпăкĕнче çакăн пек йĕркесем пур: «Чăваш Республикин патшалăх влаçĕпе управлени органĕсем бюджет палăртса хатĕрленĕ чухне хăй тĕллĕнлĕх принципне тĕпе хурса ĕçлеме тата çак принципа тӳрре кăларма тивĕçлĕ». Бюджет тунă чухне хăй тĕллĕнлĕх принципне тĕпе хумалла тени вăл шăпах эсир каланине те шута илмеллине пĕлтерет.

Аслă пуху Чăваш Республикин патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан резолюцишĕн сасăларĕ. Çӳлерех асăннă документсене сӳтсе явнă чухне делегатсенчен чылайăшĕ, уйрăмах республика тулашĕнчен килнисем, вĕсемпе паллашманни палăрчĕ. Мĕншĕн тесен вĕсене республика хаçачĕсенче юпа уйăхĕн 7-мĕшĕсенче çеç пичетлесе кăларнă, документсене вуласа та ĕлкĕреймен. Çавăнпа инçетрен килнĕ делегатсем йышăнмасăр юлнă резолюцисене сӳтсе явассине тепĕр куна хăварма сĕнчĕç. Çавăн пекех вĕсене резолюцисем политика докуменчĕсем пулни иккĕлентерет. Анчах культурăна, чĕлхене аталантарас ыйтусене политика йышăнăвĕсем кăлармасăр татса параймастăн-çке. Хальлĕхе, шел те, республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсен пĕр йышĕ çакăн пирки шутламасть пулмалла.

***

Ирхи кӳлĕм секцисене пайланса ĕçленĕ делегатсем ĕнер кăнтăрлахи апат хыççăн каллех Чăваш патшалăх филармонийĕн пысăк залĕнче пухăнчĕç. Аслă Пуху хăйĕн ĕçне малалла тăсрĕ.

Чăваш Республикин Министрсен Совечĕ çумĕнчи наука тĕпчев институчĕн директорĕ **С. Малютин** «Чăваш халăх историйĕ», Чăваш педагогика институчĕн доценчĕ **А. Ефимов-Кибеч** «Наци шкулĕн аталанăвĕ», Чăваш Республикин Аслă Совечĕн яланхи комиссийĕн председателĕ **А. Хусанкай** «Чăваш культури. Хальхи вăхăтри чăваш чĕлхи», Чăваш çамрăкĕсен республикăри союзĕн председателĕ **О. Цыпленков** «Çамрăксем тата культурăна аталантарас ĕçри йывăрлăхсем» темăсемпе секцисенче делегатсем мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕç. Аслă пуху секцисенче сӳтсе явнă «Чăваш шкулне аталантарасси тата наци кадрĕсем хатĕрлесси çинчен», «Массăллă информаци хатĕрĕсем çинчен», «Чăваш предпринимательствин ĕçне аталантарасси çинчен», «Пĕтĕм чăвашсен хаçатне – Чăваш наци конгресĕн органне – туса хурасси çинчен», «Чăваш Республикин тата чăваш халăхĕ йышлă пурăнакан вырăнсенчи экологи тĕлĕшĕнчи лару-тăру çинчен», «Чăваш наци кĕнекине кăларас ĕçе хӳтĕлесси çинчен», «Чăваш кино искусствине чĕртсе аталантарасси çинчен» резолюцисем йышăнчĕ.

Чăваш Республикин патшалăх чĕлхи чăваш чĕлхи пулса тăтăр тесе йышăнни пирки уйрăммăн чарăнса тăмалла. Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» колхоз председателĕ **А. Айдак** ку ыйтăва Конгресăн пĕрремĕш кунĕнче çĕклерĕ. Ун шухăшне хирĕçлекенсем ĕнер те вырăсланнă темиçе чăваш пулчĕç. Апла пулин те Аслă пуху сĕнĕве йышăнчĕ.

Аслă пуху республика тĕп хулине пĕр чĕлхепе – чăвашла – «Шупашкар» ят памашкăн сĕнӳ тăратрĕ, Грузин Патшалăх совечĕ пуçарнипе Абхазие тапăнса кĕнине чарса лартма ыйтса телеграмма яма йышăнчĕ, Чăваш Республикин Патшалăх пурлăхне тытса тăрас енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ РНМЦ çуртне хăйĕн аллине туртса илме хăтланнине сивлерĕ, правительствăна вăхăта тăсса ямасăр Чăваш Республикин культура министрне çирĕплетме сĕнчĕ.

Унтан делегатсем «Чăваш наци конгресĕ Чăваш Республикин, Раççейри, СНГри тата пĕтĕм тĕнчери халăхсене Чĕнсе калани» йышăнчĕç. Чăн та, ку ыйтупа та икĕ тĕрлĕ сĕнӳ пулчĕ. Вĕсене сӳтсе явнă хыççăн Аслă пухăва пăхса тухма документсем хатĕрленĕ комисси чĕнĕвĕ çĕнтерчĕ. Çакăн хыççăн Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашне тата ревизи комиссине суйларĕç.

Чăваш наци конгресĕн президенчĕ пулма делегатсем виçĕ кандидатура сĕнчĕç: ЧР Аслă Совечĕн культура, чĕлхене тата нацисем хушшинчи хутшăнусене аталантарас енĕпе ĕçлекен комиссийĕн председателĕ **А. Хусанкай**, Чăваш патшалăх университечĕн кафедра заведующийĕ **В. Никитин-Станьял** тата **А. Николаев** космонавт-летчик.

А. Николаев, хăй Раççей халăх депутачĕ тата Чăваш Республикин Мускаври представителĕ пулнă май, асăннă ĕçре вăй хума вăхăт çитменнине палăртрĕ, çакна делегатсене ăнланма ыйтрĕ, хăйĕн кандидатурине сирчĕ. Çапла вара ЧНК президентне суйлама кĕртнĕ спископра икĕ хушамат. **Аслă пуху, уççăн сасăласа, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ пулма Атнер Петрович Хусанкая суйларĕ.**

Конгресс делегачĕсемпе хăнисем ура çине тăраççĕ, чылайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Чăваш наци конгресĕн Гимнĕ «Алран кайми аки-сухи» янăраса каять. Çакăнпа Чăвашсен Аслă пухăвĕ хупăнчĕ.

***

Ĕнерех Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн пĕрремĕш ларăвĕ иртрĕ. ЧНК Уставĕпе килĕшӳллĕн – Мăн Канашра президент сĕннипе Кĕçĕн Канаш суйласа хăварчĕç.

Юрий МИХАЙЛОВ.

*«Хыпар», 10.10.1992, 203 №.*

## Конгресс секцийĕсенче

# ЧĔЛХЕ ПĔТМЕСЕН ХАЛĂХ ПĔТМЕСТ

Икĕ çул каялла, 1990 çулхи юпа уйăхĕнчи 24-мĕшĕнче, ЧР Аслă Совечĕ «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» закон йышăннă. Вăл майĕпен пурнăçа кĕрсе пырать. Аслă Совет Президиумĕ çумĕнче чăваш чĕлхине вĕрентес тĕлĕшпе орфографи, терминологи тата ономасти çумкомиссийĕсемпе пĕрле комисси туса хунă. Комисси чăваш чĕлхине аталантармалли патшалăх программи хатĕрленĕ. ЧР Аслă Совечĕн Культура, чĕлхе аталанăвĕ тата нацисем хушшинчи хутшăнусем енĕпе ĕçлекен комисси председателĕ **А.Хусанкай ертсе пынă «Чăваш культури. Хальхи чăваш чĕлхи»** секци ĕçне хутшăннă Чăваш наци конгресĕн делегачĕсем çак программăна сӳтсе яврĕç. Унпа комисси председателĕ **И.А. Андреев** профессор паллаштарчĕ.

Программа чĕлхе законне пурнăça кĕртмелли çулпах пырать. Тĕллевĕсем пархатарлă. Сăмахран, учреждениесемпе организацисен, предприятисен ячĕсене чăвашла йĕркелесе çитермелле, халăхпа ĕçлекен должноçри çынсен, пуçлăхсен, транспортра ĕçлекенсен патшалăх чĕлхисене иккĕшне те пĕлмелле, чăвашла ятсене, топонимикăна йĕркене кĕртмелле, Чăваш радиопа телевиденийĕн эфирти вăхăтне ӳстермелле, вĕсен передачисене урăх республикăсемпе облаçсенчи чăвашсене кăтартассине- итлеттерессине йĕркелемелле, вун пĕрмĕш класченех пур предметпа та чăвашла

вĕрентмешкĕн йышăнма шкулсене хăйсене ирĕк памалла тата ытти те. Çак программăна вунă çулта пурнăçлама палăртнă.

– Тăван халăха сыхласа хăварасси чи малтанах тăван чĕлхене аталантарасçинчен килет, – терĕ Чăваш академи драма театрĕн тĕп режиссерĕ, СССР халăх артисчĕ **В. Яковлев** хăйĕн сăмахĕнче. Çак шухăш хумхантарнăранах пулĕ – тухса калаçнă чĕлхеçĕсем, чăваш чĕлхи учителĕсем кăна мар, ÿнер ĕçченĕсенчен чылайăшĕ те чĕлхе ыйтăвне çивĕч хускатрĕç.

Малашне программăна пурнăçа кĕрсте пынă май, аслă, ятарлă вăтам вĕренÿ заведенийĕсенче чăваш чĕлхин предмечĕ пулать. Ытти наци çамрăкĕсен те, темăн пек кăмăл туртмасан та, чăваш чĕлхине вĕренесех пулать. Тен, çакăнтанах пуçланĕ ытти халăхсене чăвашсен тăван чĕлхине хисеплеме, йăхташсене хаклама вĕрентесси. Тем пекехчĕ. Анчах шанчăка «пылри пĕр кашăк тикĕт» хавшатрĕ. Чăваш чĕлхине аталантармалли программăна зал вырăсла итлерĕ. Ăна Конгресчен чăвашла куçарма ĕлкĕреймен иккен!?

Алина ЛУКИЯНОВА.

## ĂСТАСЕМПЕ ПУЯН

Чăваш мĕн авалтан ĕçченлĕхĕпе кăна мар, юрри-ташшипе те, ылтăн алăллă пулнипе те палăрса тăнă. Мăн асатте-асаннесен ăсталăхне, тĕрри-илемне паян кунччен упраса хăварса тĕнче умне кăларма пултарнăшăн савăнмалла кăна. Чăнах та, вунă-вун пилĕк çул каялла, халăхăмăрăн прикладной искусстви, ылтăн алăллă ăстасем пултарулăх çулне хăйсем пĕлнĕ пек такăрланă тата вăл сапаланчăклă пулнă май, чĕрĕлĕхне самаях хавшатнăччĕ. Сакăр вуннăмĕш çулсенче вара республикăн Культура министерствин наукăпа методика центрĕнче ĕçлекенсем çине тăнипе несĕлсен пуянлăх-ăсталăхне пĕрчĕн-пĕрчĕн тупса палăртса, авалхи ăсталăхсене çĕнĕрен чĕртсе яма хал çитерчĕç. Халĕ ĕнтĕ ăстаçăсен ĕçĕсене (ĕçĕсене тенипех вĕсен пултарулăхне тивĕçлипе хаклама май килмест-и тен, апла пулсан – ахах-мерченне эппин) пĕр çĕре пухса халăха курса савăнмалăх, ырă сунса ăмсанмалăх, çавăнпа пĕрлех вĕсен иксĕлми пуянлăхне малалла аталантарса çамрăк ăрăва вĕрентсе хăварма майсем çителĕклех.

Методика центрĕнче пулса укçа-тенкĕпе хаклама çук мул-пуянлăхпа паллашрĕ пĕтĕм тĕнчери чăвашсен Аслă пухăвне хутшăннисен пĕр ушкăнĕ ÿнер пирĕн тĕп хулара. **«Халăх промыслисене чĕртсе аталантарасси»** секцие хутшăнакансем, тĕпрен илсен, хăйсем çак ĕçе чунтан парăннă çынсем. Акă, **А. Еграшкин** Чĕмпĕрти ачасен искусство шкулĕнче ĕçлет. Йывăçран япаласем касса тăвассипе интересленет вăл. Унăн ĕçĕсене ÿнер музейĕнче йĕркеленĕ выставкăра та курма пулать. **В. Иванов** – Йошкар-Оларан. Ăна та «çав чирех» канăçсăрлантарать. Йывăçран касса тĕрлĕ япаласем ăсталас пултарулăха ашшĕнчен вĕренсе юлнăскер халĕ хăй ыттисене вĕрентет. Тĕп чăвашсен ĕçĕсемпе тĕплĕнрех паллашас тĕллев вĕсен. Чĕмпĕр, Самар, Челябинск, Пушкăрт, Тутар, Мускав енчен килнĕ хăнасем чăваш тĕррин лабораторийĕнче пулса **М. Симакова** алли витĕр тухнă куç тулли илемпе киленчĕç. **А. Ильбекова** пир-кавир тĕртессин вăрттăнлăхĕсене уçса панипе хăнасем питĕ интересленчĕç.

Чăваш эстрада юррисен студийĕнче, техника хатĕрĕсен кабинетĕнче пулчĕç Конгресс делегачĕсем. Выставка залĕнче вара хăйсен кăмăлне кайнă ал ăстисен произведенийĕсене – савăт-сапана е йăлара усă курмалли ăпăр-тапăра асăнмалăх туянма пултарчĕç.

Халăх искусствин музейĕн ĕçĕ-хĕлĕпе наукăн аслă сотрудникĕ **В. Ильина** паллаштарнипе хăнасем кăмăллă юлчĕç.

Республикăн культура министрĕн заместителĕ **А. Емельянова**, искусствоведени кандидачĕ **А. Трофимов**, «Паха тĕрĕ» фабрикăн тĕп художникĕ **Н. Ильина** чăваш культурин сĕм авалтан паянхи кунччен утса тухнă çул-йĕр, тĕрĕ ăсталăхĕ çинчен чуна тивмелле каласа пачĕç.

Секци ĕçне хутшăннисем, Самар облаçĕнчен килнĕ делегаци членĕсем пуçарнипе, РНМЦ çуртне Патшалăх пурлăхĕ енĕпе ĕçлекен комитета пама йышăннине сивлесе Чăваш Республикин Аслă Советне çыру яма йышăнчĕç. Унта секци ĕçне хутшăннă кашни делегат алă пусрĕ.

Валентина СМИРНОВА.

## «ЧĂВАШ ЕН ТĔСЛĔХ КĂТАРТТĂР»

Республикăна рынок хутшăнăвĕсем çине куçарасси, çакăнпа пĕрлех Чăваш Республики ыти регионсемпе çыхăнусем йĕркелесси паянхи тĕп ыйтусенчен пĕри тесен те йăнăш пулмасть. Эпир тем тĕрлĕ ыйту та çĕклетпĕр, вĕсене татса памаллине палăртатпăр, анчах çакă пурнăçа кĕресси ялан тенĕ пекех укçа-тенкĕ пуррипе е çуккипе, экономика майĕсемпе çыхăнса тăрать. Çавăнпа та Чăваш наци конгресĕн иккĕмĕш кунĕнче ку енĕпе **ятарлă секци** ĕçлени ахальтен мар. Чăннипех пысăк ыйтусем. Секци ĕçне Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн председателĕ **В. Викторов** ертсе пычĕ. Унта халăх хуçалăх комплексне аталантарассишĕн яваплă министерствăсен пуçлăхĕсем, ĕçлĕ ушкăнсен представителĕсем, çавăн пекех Конгресăн ытти регионсенчен килнĕ делегачĕсемпе хăнисем хутшăнчĕç.

Республикăн экономика министрĕ **В. Тарасов** Чăваш Енре экономика реформи мĕнле пынипе паллаштарчĕ. Хăш-пĕр лайăх улшăнусемпе пĕрлех тÿнтерле пулăмсем те пуррине, тĕрлĕрен йывăрлăхсем сиксе тухнине палăртрĕ. Халĕ экономика реформин витĕмĕ регионсене куçать, унăн аталанăвĕн шăпине регионсенче татса параççĕ.

Хальлĕхе Чăваш Республикин экономики йывăрлăха кĕрсе ÿкмен-ха, тенкĕ те вăйне çухатман. Ку таранччен пирĕн промышленноç ытларах аталанса пынине палăртнă май вăл çăмăл промышленноç тÿпине ÿстерме кирлине асăнчĕ.

Республика вăй-хăватне илес пулсан, пирĕн экономикăн аталанма майĕсем пур. Вăл географи тĕлĕшĕнчен те меллĕ вырнаçнă, ытти регионсемпе çыхăну тытма çул-йĕр те пур, тăпра пулăхĕ те начар мар, çут çанталăк енчен те ÿпкелешмелли çук – туризм, санатори комплексĕсене аталантарма пулать. Чăн та, пирĕн чикĕсем тинĕс патне тухмаççĕ, ытти çĕр-шывсемпе çыхăну тытма йывăртарах. Анчах майсем пур. Сăмах май, секци ĕçĕ вăхăтĕнчех Эстони делегацийĕсен представителĕсем Таллинн порчĕпе усă курма май пурри çинчен сĕнÿ тăратрĕç.

Республикăра патшалăх пурлăхне уйăрас тата приватизацилес ĕç мĕнле пынипе Патшалăх пурлăх комитечĕн председателĕ **М. Андронов** паллаштарчĕ.

Çĕр реформи енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ **В. Герасимов** республикăра çĕр реформи ирттерессипе çыхăннă уйрăмлăхсем çинчен пĕлтерчĕ.

Реформăсем пурнăçа кĕрсе пыччăр тесен экономикăра конкуренци кирлĕ, палăртрĕ Раççейĕн Монополие хирĕçле комитечĕн территори управленийĕн пуçлăхĕ **В. Федоров**. Çакăн валли производство структурине улăштармалла, анчах халĕ çакă сисĕнсех каймасть, конкуренци вара çывăх вăхăтра палăрма пуçласси курăнмасть. Суту-илĕве коммерциализацилени те (90 процент таран!) конкуренци çуратмарĕ. Монополист-предприятисем хăйсен позицийĕсене çав-çавах çирĕп тытаççĕ.

Америка бизнесменĕ **С. Падюков** секци ĕçне хутшăнни зала пухăннисемшĕн интереслĕ пулчĕ. Вăл Америкăра бизнес мĕнле аталаннипе паллаштарчĕ, Чăваш Республикинче ку енĕпе питĕ асăрхануллă ĕçлеме кирлине палăртрĕ. «Тупăш паракан предприятисене салатма ан васкăр, ĕçлеччĕр вĕсем, продукци паччăр. Мĕн лайăххипе усă курмалла», – терĕ вăл.

Чăваш Республикин Предпринимательсен союзĕн президенчĕ **В. Павлов**, хăй рынок хутшăнăвĕсемпе тахçанах çыхăннă май, çĕр уйрăм çын харпăрлăхĕ пулмалли, çакна законпа çирĕплетсе хăвармалли çинче чарăнса тăчĕ. Бизнес вăй илтĕр тесен ĕçлĕ çынсене çăмăллăхсем пама тăрăшмалла, питĕ пысăк налукран хăтармалла, терĕ вăл, çавăнпа уйрăмах производствăна аталантарма каякан тупăшран илекен налук виçине пĕчĕклетмелле, унсăрăн малалла кайма май çук.

Владимир САРИЛОВ.

## НАЦИ ШКУЛĔ – ЧĂВАШЛĂХ УПРАВĔ

И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн акт залĕнче ĕнер чăвашлăха упраса хăварма, ăна аталантарма пулăшакансем – чăваш чĕлхин учителĕсем пухăнчĕç. **«Наци шкулĕ»** секци ĕçне ЧР Министрсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ В.П. Мидуков уçрĕ, вăлах ертсе пычĕ.

ЧР халăха вĕрентес ĕç, наука тата аслă шкул министрĕ **В.Д. Данилов** «Наци шкулне аталантармалли çул-йĕрсем çинчен» доклад туса пачĕ. Хăйĕн сăмахĕнче докладчик наци шкулне аталантармалли концепципе программа çинче чылай чарăнса тăчĕ. Кăçал Шупашкарта наци лицейĕ уçăлнă. Ялта пурăнакан талантлă ачасене тăван чĕлхене, математикăпа физикăна тарăн вĕрентме пуçланă унта. Малалла кунта республика тулашĕнче пурăнакан чăваш ачисем те вĕренме пуçлĕç. Шупашкарти педучилище никĕсĕ çинче колледж йĕркелесси пирки те асăнчĕ докладчик. Унта чăвашсен нумай ачи те вĕренме пултарĕ. Эпир, чăвашсем, тĕрĕк йăхĕнчен тухнă пулсан та, тĕрĕк халăхĕсен чĕлхине пĕлменнине те палăртрĕ министр. Çавăнпа та малашне Чăваш университечĕн студенчĕсене Азербайджанра, Кăркăсстанри е Узбекистанри вĕренӳ заведенийĕсенче çав асăннă чĕлхесемпе пĕлӳ пухма май туса парасси пирки каларĕ. Азербайджанра, сăмахран, пирĕн 5 студента йышăнма хатĕр иккен. Тĕп докладчик хăйĕн сăмахĕнче тата ытти чылай ыйтăва хускатрĕ. Çапах та, ман шутпа (çавăн пекех ытти учительсем те палăртрĕç ăна), Аслă Пуху ĕçне хутшăннă делегатсене туллин тивĕçтермерĕ вăл. Министр доклада чиперех тăван чĕлхепе пуçласа, кĕтмен-туман çĕртен вырăсла калаçма пуçлани чăваш учителĕсене самай тĕлĕнтерчĕ. «Пирĕн те чăваш чĕлхине вырăсла вĕрентмелле-и вара?» – терĕ манпа юнашар ларакан учительница.

Пединститут ректорĕ **Г.С. Сидоров** хăй ертсе пыракан вĕренӳ заведенийĕнче тăван чĕлхене вĕрентес, наци кадрĕсем хатĕрлес ĕç пирки тĕплĕ чарăнса тăчĕ.

1930 çулта уçăлнă пединститут – тăван халăх валли наци кадрĕ хатĕрлекен пĕрремĕш аслă шкул. Чăваш чĕлхине вĕрентесси хисеплĕ ĕç пулнă, анчах 1967 çулта унта тăван чĕлхе илтĕнми пулнă. Университетра вĕрентетпĕр, çитет, тенĕ пуçлăхсем. Анчах пединститута ертсе пыракансем çав-çавах шанăçа çухатман. Акă кăçал вара кунта чăваш уйрăмĕ çĕнĕрен «çуралнă».

«Чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи пулнă май, кашни аслă шкулта вĕрентмелле ăна, – терĕ Г.С. Сидоров. – Хамăрăн институтра çапла тăватпăр та. Л.П. Сергеевпа В.И. Котлеевăн «Чăваш чĕлхи» учебникĕпе, кăçал вăл ЧР Патшалăх премине тивĕçлĕ пулчĕ, усă куратпăр. Вырăсла çеç калаçакан студентсем валли те учебник хатĕрлетпĕр». Пединститут хăш-пĕр район центрĕсенче педагогика класĕсем уçнă. Яллă вырăнта пурăнакансене аслă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕме чылай пулăшать çакă.

Кăçал **Г.Н. Волков** академик Чăваш патшалăх университечĕн йышăну комиссийĕн тĕп председателĕ пулнăччĕ. Чăваш филологийĕпе культурин факультечĕ пирки «ку чăн-чăн чăвашлăх утравĕ» тенĕччĕ. Чăнах та сахал мар ĕç тăвать асăннă факультет. Филологсем çеç мар, наука ĕçченĕсем, журналистсем, библиотекарьсем, музей работникĕсем, культурологсем т.ыт.те хатĕрлет факультет. Иртнĕ çултанпа факультетра тулай çамрăкĕсем валли хатĕрленӳ курсĕ уçнă.

**Г.Н. Волков** академикăн сăмахĕнче наци шкулне аталантарма пулăшакан сĕнӳсем чылай пулчĕç. Сăмахран, вăл шкулсенче территорисен историне мар, тăван халăх историне вĕрентме, чăваш шкулĕсенчен вĕренсе тухнă ачасен прависене анлăлатма кирлине асăнчĕ. Ачасене аслă ăрусен – несĕлĕмĕрсен ырă йăли-йĕркин тĕслĕхĕпе вĕрентесси этнопедагогикăра пысăк вырăн йышăннине палăртрĕ. «Чĕмпĕрти чăваш шкулне çĕнĕрен йĕркелесе ярасси – паянхи кун татса памалли ыйту», – терĕ Геннадий Никандрович.

Наци шкулне аталантарас енĕпе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явма çавăн пекех Чăваш Енре пурăнакан тата республика тулашĕнчен килнĕ учительсем те хутшăнчĕç.

Надежда СМИРНОВА.

## ТĂВАН СĂМАХ ТУТЛĂ-И?

**«Чăваш литератури тата пичет»** секци малтан Пичет çуртĕнче ĕçлерĕ. Ларăва, кĕске сăмах каласа, конгреса йĕркелекен комитет председателĕн çумĕ **В. Никитин-Станьял** уçрĕ. Тăван чĕлхе аталанăвĕ нумай енчен пичетпе литературăран килет. Чĕлхе тавра çеç чăваш халăхĕ чăмăртанма пултарать. Çак шухăша тĕпе хурса ĕçлерĕ пичетпе кăсăкланакансен секцийĕ. Ларăва пухăннисем республикăра тата районсенче тухса тăракан хаçатсен паянхи пурнăçне мĕнле çутатнине тишкерчĕç, вĕсен умĕнче тăракан задачăсене палăртрĕç. «Хыпар» – чăваш халăх хаçачĕ. Вăл республикăра та, унăн тулашĕнче те нумай сарăлать. Хаçата вулаççĕ, кĕтеççĕ. Анчах Шупашкарта ăна çав тери сахал çырăнаççĕ. Кунта вара чăвашсем йышлă-çке, палăртрĕ хăйĕн сăмахĕнче «Хыпарăн» тĕп редакторĕ **А. Леонтьев.**

Ларура «Çилçунат» журналпа «Тантăш», «Чăвашьен» хаçатсен редакторĕсем **А. Смолин**, **А. Крыльцов**, **И. Семенов**, «Чебоксарские новости» хаçатăн яваплă секретарĕ **А. Вражкин** хăйсен редакцийĕсен нуши-терчĕпе паллаштарчĕç. Каламалли пурах вĕсен. Çитес çул валли çырăнакансен хисепĕ сахал. Уйрăмах район хаçачĕн пуласлăхĕ шухăшлаттарать. Вĕсенче журналистсен кадрĕсем çителĕксĕр. Чăн чăвашла пĕлекенсем сахал пулнă пирки хăш-пĕр районсенче хаçатсем вырăсланма пуçланă. Çакна палăртрĕ Куславкка район хаçат редакторĕ **В. Константинов**. Чăвашрадион литература передачин тĕп редакторĕ **П. Андреев** та çав хаçатсене çирĕп хӳтĕлерĕ.

Ларура Пушкăртстан журналисчĕ **Б. Тихонов**, Тутарстанран килнĕ **М. Паймуратов** учитель, Красноармейски районĕнчи **М. Тимофеев**, **Н. Сироткин**, «Советская Чувашия» хаçат редакторĕн заместителĕ **А. Белов**, «Хыпар» хаçат корреспонденчĕ **Г. Макаров**, Екатеринбургран килнĕ **В. Плотников**, **Л. Правдина** тата ыттисем тухса калаçрĕç, кирлĕ сĕнӳсем пачĕç. Çапах та секци ĕçне хутшăннисем пулас чăваш наци хаçачĕн шăпи пирки нимĕн те калаймарĕç. Çакă вара кирлехчĕ.

Секци хăйĕн ĕçне республикăри Çыравçăсен çуртĕнче малалла тăсрĕ. Кунта ларăва **Ю. Семенов (Сементер)** ертсе пычĕ. **Хĕветĕр Уяр** писатель, **Николай Терентьев** драматург, Пушкăртстанран килнĕ библиотекарь **А. Яковлев**, Тутарстан делегачĕ **Г. Герасимова**, Шăмăршăри радиоорганизатор **Г. Смаев**, Самар облаçĕнчи Исаклă районĕнчи **В.Семенова** библиотекарь тухса калаçрĕç. Юлашкинчен **Г. Ефимов** поэт сăмах илчĕ. Вăл Наци конгресĕн пĕрремĕш кунĕ питĕ япăх иртнĕ пирки хумханса пĕлтерчĕ. Çав вăхăтрах ку çуртра иртнĕ чăваш литератури тата пичет секцийĕнчи лару та тивĕçлĕ шайра иртмерĕ, ĕçлĕ калаçу пулмарĕ. Çыравçăсен хăйсен вулаканĕсем умĕнче яваплăх туймаллах пулнă.

Сергей КАРЯГИН.

*«Хыпар», 1992, юпа, 10, 203 №.*

## Конгресс хăнисем
## «ТАТАХ КИЛĔП-ХА ЧĂВАШ ЕНЕ...»

**Ласло Викар** – Чăваш наци конгресне чикĕ леш енчен килнĕ хăнасенчен пĕри. Вăл – Венгри Наукăсен академийĕн музыка институчĕн халăх музыкин архивĕсен ертӳçи. Çав вăхăтрах вăл Атăл тăрăхĕнче пурăнакан халăхсен юрри-кĕввине тĕпчекен паллă специалист та. Чăваш музыкине чикĕ леш енче пропагандăлас тĕлĕшпе те сахал мар ĕçлет Ласло Викар профессор. Акă вăл хăй паян Чăваш Енре хăнара.

**– Хисеплĕ профессор, эпир пĕлнĕ тăрăх, эсир Шупашкарта пĕрремĕш хут мар. Çак вăхăтра улшăнусем пулса иртнĕ пулĕ, асăрхарăр-и вĕсене?**

– Паллах. Эпĕ кунта 1960-1975 çулсенче фольклор экспедицийĕ иртternĕ. Виçĕ хут пулнă. Габор Берецки лингвистпа пĕрле. Вăл чăвашла та аван чухлатчĕ. Габор юрăсен сăмахĕсене çырса илетчĕ,

эпĕ – кĕввине (нотăсемпе). Шупашкар улшăннă-и тетĕр-и? Паллах. Кивĕ хулан палли те юлман. Те лайăх ку, те япăх. Калама та пĕлмелле мар. Пирĕн аваллăхпа çыхăнтаракан тымарсем татăлса пыни питех савăнтармасть ĕнтĕ.

**– Кашни халăхшăн хăйĕн тăван юрри хаклă. Чăваш Енрен аякра пурăнакан венгра чăваш кĕвви-çемми мĕнпе илĕртрĕ?**

– Тĕрĕсех калатăр, тăван юрă чуна çывăх. 1950 çулсен вĕçĕнче эпĕ хамăрăн юрăсене тĕпчеттĕм. Мадьярсен юррисен тымарĕсем Атăл тăрăхĕпе çыхăннине ăнланса илтĕм çавăн чухне. Археологсем, историксем, чĕлхеçĕсем çав тымарсен пĕрлĕхне хăйсен майлă ăнлантараççĕ пулсан, эпĕ вара – халăх юррисемпе. Пирĕн тата сирĕн юрăсен пĕр евĕрлĕхĕ чи малтан сасă речĕсем пĕр пек пулнинче. Пушкăрт, удмурт, мари, мордва тата чăваш халăх юррисем пирĕн фольклора аса илтереççĕ. Манăн архиврa вĕсем – 4 пин ытла.

**– Каçарăр та, хăвăр пухнă чăваш халăх юррисен шутне палăртнă-и?**

– 651 произведени. Вĕсенчен 35-шне 1979 çулта Будапештра кун çути курнă «Чăваш халăх юррисем» кĕнекере (юрăсен тексчĕ чăвашла тата акăлчанла) пичетлесе кăларнă. Халĕ çитес вăхăтрах çакнашкал тепĕр кĕнеке кăлармалла – тутарсенне. 1987 çултаччĕ пулас-ха – Атăл тăрăхĕнчи финн-угорсемпе тĕрĕк халăхĕсен юррисен пластинки кун çути курчĕ. Унăн пĕр енче йăлтах чăваш халăх юррисем. Ăнăçлă пулчĕ çав ĕç маншăн.

**– Хальхи вăхăтра чăваш халăх юррисемпе ĕçлетĕр-и?**

– Ку таранччен мĕн тунипе лăпланса ларман пулсан та малашнехи плансене палăртмаллаччĕ-ха. Каларăм ĕнтĕ çитес вăхăтрах тутар халăх юррисен кĕнекине кăларма хатĕрленетĕп тесе. Мана Чăваш наци академийĕн хисеплĕ членне суйлани халĕччен мĕн тунипе çырлахма хушмасть. Манăн ĕç, пулăшу сирĕншĕн усăллă пулсан татах та килĕп-ха Чăваш Ене.

**– Эсир халăх юррисене пухакан çеç мар, ăна пропагандăлакан та терĕр хăвăр пирки. Мĕнле майпа ытларах усă куратăр ку енĕпе?**

– Эпĕ Венгри Наукăсен академийĕн музыка институчĕн халăх музыкин архивĕсен ертÿçи çеç мар, чи малтанах хама преподаватель тесе шутлатăп. Çамрăксем тĕрлĕ халăх юрри-кĕввипе чунтан интересленеççĕ.

**– Каçарăр та, венгр студенчĕсене таçти инçетри чăвашсем пирки итлесе ларма кичем пулмĕ-и?**

– Пачах урăхла. Яланах хавас вĕсем çĕнĕ материалпа, халĕччен илтмен япалапа паллашма. Венгрири çеç мар, ытти çĕр-шывсенчи, ытларах Канадăри, институтсемпе университетсенче лекцисем вулатăп эпĕ. Унта пурăнакансем те чăваш халăх юррисемпе пĕрре çеç мар паллашнă.

**– Хисеплĕ профессор, эсир – Чăваш наци конгресĕн хăни. Пĕрик сăмахпа та пулин чăвашсен Аслă Пухăвĕ пирки хăвăр мĕн шутланине пĕлтермĕр-ши?**

– Кам ир вăранать, çавă выляса илет теççĕ пирĕн патăрта. Манăн та чăвашсене çывăрттарса хăварас килмест. Ун пек ыйхăллă халăх мар-ха вăл ахаль те. Ĕçченлĕхĕпе палăрса тăраканскерĕн кайра пыма сăлтавĕ те пулмалла мар.

**– Конгресс ĕçне хутшăннисĕр пуçне тата мĕнле шухăш-тĕллев пур сирĕн Шупашкарта?**

– Чăвашрадиопа телевидени хорĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашасшăн, çавăн пекех чăваш музыкине тĕпчекенсемпе курса калаçмаллах тетĕп. Конгресс делегачĕсем валли ирттерекен культура программисем те маншăн интереслĕ пуласса шанатăп.

**– Ют çĕр-шывсенче час-часах командировкăсенче пулатпăр тетĕр. Мăшăрăр мĕнле йышăнать çакна?**

– Тĕрĕсне калас тăк, вăл манран та ытларах тухса çÿрет чикĕ леш енне. Пирĕн виçĕ ача, вĕсем ÿссе çитĕннĕ ĕнтĕ, мăнуксем те пур. Арăм та хам пекех музыкант. Вăл пенсире пулсан та ĕçлеме пăрахмасть-ха. Нумаях пулмасть эпир пĕрлешнĕренпе 40 çул çитрĕ. Çак кун эпĕ Канадăран вĕçсе килтĕм, мăшăрăм – Японирен.

**– Юлашкинчен мĕн калана пулăттăр чăваш халăхне?**

– Сирĕн халăхăн юрри-кĕввине Венгрире, ытти çĕр-шывсенче пропагандăлас енĕпе малашне те ĕçлесчĕ-ха.

*Надежда СМИРНОВА калаçнă.*

*«Хыпар», 10.10.1992, 203 №.*

# ПОЛЕМИКА БЫЛА КОНСТРУКТИВНОЙ

9 октября в первой половине дня делегаты работали в семи секциях. Весьма оживленно проходила дискуссия в секции «История чувашского народа». С большим вниманием был выслушан доклад заместителя директора ЧНИИ **В.П. Иванова** «Этническая история чувашей». Затем с сообщениями выступили видные историки, профессора **В.Ф. Каховский, П.В. Денисов, В.Д. Димитриев**, которые сосредоточили внимание собравшихся на особенностях этногенеза, начальных этапах формирования чувашского народа. Этот вопрос имеет фундаментальное значение для понимания особенностей истории, языка и культуры, подчеркнули ученые. Вместе с тем они признали, что некоторые страницы богатой истории чувашского народа освещены поверхностно. Об этом говорил в своем выступлении и кандидат исторических наук **А.В. Изоркин**. Он выдвинул нетрадиционную версию происхождения чувашского народа.

На секции был выработан ряд рекомендаций для рассмотрения на правительственном уровне, а также в учреждениях науки. В частности, предлагается широко отметить 115-летие видного этнографа Н. Никольского, дать новый импульс краеведческому движению, изыскать средства для издания истории населенных пунктов и фундаментальной истории чувашского народа, последовательно пополнять архивный фонд Чувашской Республики.

В дискуссии о путях развития национальной школы участвовали видные ученые, руководители вузов и Министерства образования, учителя. Первоначально предусматривалось обсуждение проблем подготовки национальных кадров, упрочения связей с учебными заведениями республик и областей, где компактно проживают чуваши. Разговор должен был идти также в русле обсуждения результатов работы национальных лицеев и гимназий, о создании условий для особо одаренных детей и т. д. Но дискуссия в целом вышла на политическую орбиту, о чем можно судить по принятым в секции рекомендациям. В частности, говорится о необходимости пересмотрения Закона «О языках в Чувашской Республике» и объявлении чувашского языка единственным государственным языком, о восстановлении деятельности Симбирской чувашской школы, об объявлении дня рождения И.Я. Яковлева национальным праздником с выходным днем, об увеличении зарплаты учителей, в том числе установления повышенного жалованья для специалистов по чувашской филологии, работающих за пределами республики. Кроме этого, предлагается установить в Чебоксарах стелу (юпа) в знак преклонения перед предками-болгарами. Вновь поставлен вопрос о принятии единого названия столицы республики – Шупашкар. Предлагается отправить телеграмму в адрес ООН и Грузинского правительства с осуждением агрессии против Абхазии. Эти и другие предложения секции вызвали весьма неоднозначную реакцию на пленарном заседании.

На заседании секции «Чувашская культура. Современный чувашский язык» речь в основном шла о положениях государственной программы развития чувашского языка. С интересом было выслушано выступление председателя языковой комиссии Верховного Совета, профессора Чувашского государственного университета **И.А. Андреева**. Он сообщил, что проект государственной программы развития языка

подготовлен в соответствии с Законом «О языках в Чувашской Республике» и охватывает все сферы общественной жизни. К реализации этого документа подключаются многие министерства и ведомства, научные и культурные учреждения, учебные заведения. В частности, Госкомимуществу поручается подготовить и издать свод официальных названий учреждений и организаций на чувашском языке. А Государственный комитет по занятости должен разработать положение, согласно которому знание чувашского языка станет необходимым при подтверждении квалификации по ряду специальностей.

Планируется ввести чувашский язык как предмет во всех высших учебных заведениях республики. Соответствующим организациям поручается изучить возможность использования чувашского языка при компьютеризации. Ставится вопрос увеличения объема теле- и радиовещания до 5–7 часов в сутки.

Говоря об изучении чувашского языка в вузах и техникумах, общеобразовательных школах и детских садах, председатель языковой комиссии подчеркнул, что никто не требует каких-то привилегий и особых условий для чувашского языка лиц коренной национальности, речь идет о создании равных условий. Согласно государственной программе чувашский язык по желанию родителей и решению педагогического коллектива может изучаться вплоть до выпускного класса не только как предмет, на нем можно изучать и основные дисциплины.

Положения этого раздела программы вызвали разноречивые толкования. Говорилось, что здесь равноправием и не пахнет, поскольку русский язык изучается на обязательной основе, а чувашский – добровольно, мол, даже пресловутая фраза «по желанию родителей» каким-то образом вновь оказалась в госпрограмме. Были и такие, кто выразил опасение, что, получив образование только на чувашском языке, вряд ли можно будет поступить в вузы.

Некоторые выступающие высказали критические замечания о том, что Закон «О языках» и государственная программа не предусматривают никакой административной и иной ответственности против тех, кто саботирует реализацию этих документов.

Известная исполнительница народных песен **З. Козлова** в своем выступлении привела огорчающий факт. Ее сын после того, как начал посещать детский сад, «сознательно» начал отказываться от родного языка, т. к. стал объектом насмешек. Обращение к воспитателям не помогло, они сами подвержены вирусу шовинизма и национального нигилизма.

– Найдутся такие, кто будет упрекать меня: вот деятель культуры, а ребенка родному языку не учит. Как учить, если буквально вытравливают из неокрепшей души родное слово? – с болью говорила артистка.

В целом дискуссии в этой секции прошла в конструктивном духе. Некоторые делегаты настаивали на принятии законодательных мер против засорения языка, ссылаясь на положительный пример решения Верховного Совета о чувашизации некоторых политических терминов. Были и предложения пересмотреть некоторые положения Закона «О языках»; в частности, изучить возможность перехода на единый государственный язык – чувашский.

Делегаты в целом одобрили государственную программу развития чувашского языка и рекомендовали утвердить её на ближайшей сессии Верховного Совета республики.

Оживленные дискуссии также проходили в Доме печати, где обсуждалась концепция общегосударственной газеты, в Чувашской телерадиокомпании, в Доме писателей, в научно-методическом центрĕ народного творчества и культпросветработы Министерства культуры республики.

В зале заседаний Совета Министров Чувашии собрались все те, кого больше всего волнуют проблемы перехода республики на рыночные отношения, разгосударствления собственности, укрепления международных и региональных связей. Заседание этой секции вел глава правительства Чувашии **В. Викторов**. Кратко рассказав о состоянии народного хозяйства республики, он передал эстафету министру экономики **В. Тарасову,** председателям Госкомимущества **М. Андронову** и Госкомзема **В. Герасимову**, начальнику территориального управления Госкомитета России по антимонопольной политике **В. Федорову**, президенту Союза предпринимателей Чувашии **В. Павлову**. Высказав интересные предложения о развитии приоритетных направлений в народном хозяйстве, изменении структуры производств, необходимости повышения зарплаты работников и т. д., почти все они свои выступления заканчивали примерно так: для кардинальных перемен нужны надежные инвестиции, немалые средства, а их, к сожалению, нет.

И тут весьма показательным стало мнение гостя из США **С. Падюкова**. Говоря о не очень-то обнадеживающих перспективах вложения в нашу республику иностранного капитала, он заметил: «Знаете, за дом, который стоит на государственной земле, я не отдам ни цента. Пожалуй, и кредитов зарубежные предприниматели не дадут, пока у вас не будет законом закреплена частная собственность на землю».

Да, тормозов на путях экономической реформы много. И многие участники заседания, обозначив их, приходили к мнению, что дела пойдут на поправку в том случае, если будет создана законодательная база. Ждать её только от правительства России вряд ли стоит, напомнили ораторы. Не лучше ли тут использовать свои возможности и права, как суверенного государственного образования в составе Федерации?

В. АЛЕКСЕЕВ, А. СОЛОВЬЕВ.

*«Советская Чувашия», 10.10.1992, №203.*

# ЭХО КОНГРЕССА

**Оценка организаторов**

**А. ХУЗАНГАЙ, президент Чувашского национального конгресса:** Самые добрые чувства у меня остались от встреч с делегатами. Признаться, многие даже не ожидали, что будет такое единство. Думается, объединяло нас понимание того, у какой пропасти оказалась наша нация. Иногда спрашивают, не утопические ли задачи мы ставим перед собой. Убежден: чувашская звезда еще далеко не погасла, она должна гореть долго и ярко.

Реализация поставленных задач во многом зависит от органов государственной власти. Просто так отмахнуться от поступивших предложений впредь будет невозможно.

**В. НИКИТИН-СТАНЬЯЛ, вице-президент конгресса:** Итоги общенациональной думы я высоко оцениваю. Думаю, за последние три-четыре года произошли такие перемены в сознании людей, о чем даже патриотически настроенные представители интеллигенции мечтали очень робко. Вспоминаю 1988 год, когда впервые зародилась идея конгресса. Даже на кафедре чувашской литературы тогда меня поддержал только один человек. Что уж говорить о партийных идеологах, которые инициаторов считали еретиками. А сегодня даже те, кто скрещивал с нами шпаги, в числе убежденных организаторов конгресса. Вот как мы выросли за это короткое время.

Документы форума, безусловно, имеют судьбоносное значение. В целом с какими чаяниями живет сегодня диаспора? Такого представления ни у кого не было. Теперь смело можем утверждать: идея возрождения имеет под собой реальную почву. Даже те, кто нас критикует за отдельные шероховатости, говорят о том, что такого подъема национального духа не ожидали.

Конечно, все, что произошло за эти два дня, трудно сразу осмыслить. Объем информации очень большой. Многие делегаты так и говорили: вернемся, расставим правильные акценты и начнем пропагандировать среди земляков решения форума.

Вместе с этим есть и чувство сожаления. Не были использованы все возможности приезда делегатов из-за рубежа. Более 20 стран Европы и Америки могли быть представлены на конгрессе, но организаторы работали в условиях жесткого цейтнота.

Кроме этого, не всегда четко действовали некоторые наши помощники из аппарата Совмина и Президиума ВС. Чувство горечи осталось от того, что не все делегаты были на высоте. Имею в виду культуру и чувство такта во время секционных и пленарных заседаний.

**Мнение делегата**

**О. ЦЫПЛЕНКОВ, секретарь республиканского Союза молодежи**: Конгресс прошел успешно, но не следует переоценивать его значение. Это только первый шаг. А впереди еще огромная работа. Ориентиры теперь определены. Надо идти и идти уверенным шагом. Такого же мнения были и делегаты съезда молодежи. Почти по всем вопросам мнения делегатов этих двух форумов совпадали.

**Взгляд со стороны**

**А.П. ПЕТРОВ, народный депутат Чувашской Республики:** Думаю, что провели очень нужное мероприятие. Можно много говорить о значении принятых документов. Но они тогда чего-то будут стоить, когда появятся возможности для их реализации. Многое, конечно, зависит от Верховного Совета. Поддержит ли депутатский корпус принятые конгрессом решения? Я предсказать не берусь. Кроме этого, многое рассчитано на перспективу, за короткий отрезок времени все намеченное осуществить просто немыслимо. Есть моменты, которые необходимо улаживать на общероссийском уровне.

Какое у меня отношение к единому государственному языку и переименованию столицы? Думается, здесь необходимо опираться на мнение широких слоев населения. Нужно привлекать силы социологов. Или иным образом установить, поддерживают ли жители республики инициативы некоторых деятелей культуры, которые на волне эйфории вылились в решение высокого форума.

**Глазами верующего**

**И. КАРЛИНОВ, священник:** С одним из организаторов конгресса В. Никитиным-Станъялом мы регулярно встречаемся. Предмет наших дискуссий один: может ли ужиться православие с языческой религией. Я очень переживаю за судьбу родного языка, но считаю, что, опираясь на эту религию, возродить нацию невозможно. Также убежден, что без России Чувашия обречена. Эти слова говорю не потому, что пытаюсь кому-то угодить или по инерции повторяю, как некоторые говорят, обветшалые истины. Эту мысль я хотел провести в своем выступлении, но меня не захотели до конца выслушать. С самыми добрыми чувствами я пришел на этот форум, но впечатления в целом остались довольно тяжелые еще вот почему. Как православный христианин, я совершил тягчайший грех. Когда во вступительной части выступали языческие жрецы, я поначалу принял их за артистов, которые произносят из фольклора поэтичные слова. Оказывается, они молились языческим богам. Истинные христиане, чтобы не преклоняться перед силами язычества, отдавали даже жизни, шли на мучения. Меня просто обманули, заставляя участвовать в языческом молении. Тяжело все это переживаю, плачу, прося у Всевышнего прощения. И во время перерыва ко мне не раз подходили, чтобы завести разговор о создании новой религии на православной основе с введением языческих элементов.

**Позиция оппозиции**

**Р. САРБИ, поэтесса, председатель Совета всечувашских женщин:** Меня вот что огорчает: интеллигенция пытается объединить народ, но сама не умеет жить в согласии между собой. Разве нельзя было до начала конгресса сесть и поговорить, чтобы начать действовать общими усилиями? С нашей стороны такой шаг был сделан. М. Юхма и другие обратились с письмом с просьбой о включении их в состав оргкомитета. ЧОКЦ сегодня теснят на обочину, это несправедливо. Аркадий Айдак взял на себя трудную миссию, попытался примирить М. Юхму и А. Хузангая. Я не знаю, кто тут виноват, но давние оппоненты не подали друг другу руки, хотя к этому были близки. Против конгресса мы не выступали. Мы говорили лишь о том, что нужно более основательно подготовиться. А для этого нужно время. Конгресс прошел бы еще более содержательно, если бы проводился после президентских выборов в Чувашии. Были бы все условия для сплочения нации.

Что я думаю о содержательной стороне конгресса? Первый день прошел рыхло. Так было и на курултае. Положение изменилось, когда начали принимать документы. Как я участвовала в работе конгресса? Пришла как непрошеный гость. Не могла усидеть дома потому, что там были мои друзья, лучшие сыны нашего народа собрались. Переживала за судьбу чувашской нации, в зал, правда, я не заходила, продавала журнал «Пике» и свою книгу с автографом. Я всегда старалась быть в гуще чувашского народа, не изменила своим принципам и на этот раз.

В. АЛЕКСИН.

*«Советская Чувашия», 14.10.1992, №205.*

# ЧӐВАШ НАЦИ КОНГРЕСӖН ТЕЛЕГРАММИ

*Нью-Йорк, ПНО (ООН) генеральнӑй секретарьне*
*Бишкек, НППП (СНГ) ҫӗршывӗсен ертӳҫисене*
*Тбилиси, Грузин Патшалӑх Совечӗ, Э. ШЕВАРДНАДЗЕ*
*Сухуми, Абхази правительствине*

Пӗтӗм тӗнчери Чӑвашсен наци конгресӗ Грузин Патшалӑх Совечӗ абхаз халӑхне хирӗҫ тӑвакан ӗҫсене сивлет тата тӗнчери обществӑсен пӗрлӗхне юн тӑкассине чарса лартма татӑклӑ мерӑсем йышӑнма чӗнсе калать.

Чӑваш наци конгресӗ. Шупашкар, 1992, юпа, 9.

# ПРОТОКОЛ

**заседания Чувашского национального конгресса, состоявшегося 8–9 октября 1992 года в г. Чебоксары по постановлению Президиума Верховного Совета Чувашской Республики**

На Чувашский национальный Конгресс избрано 905 делегатов.

На Чувашском национальном конгрессе присутствовало 885 делегатов, 158 приглашенных.

Избран президиум Чувашского национального конгресса в составе 53 человек.
Избран секретариат конгресса в составе 8 человек.
Избрана редакционная комиссия в составе 6 человек.
Избрана мандатная комиссия конгресса в составе 7 человек.
Избрана счетная комиссия конгресса в составе 6 человек.
Единогласно утверждена следующая повестка дня:

**1.** Возрождение чувашской нации – историческая необходимость.
(Докладчик – Председатель Верховного Совета Чувашской Республики Э.А. Кубарев)
**2.** Проблемы возрождения и развития национальной культуры, образования и языка чувашской диаспоры.
(Содокладчик – председатель постоянной Комиссии Верховного Совета Чувашской Республики по культуре, развитию языка и межнациональных отношений А.П. Хузангай)
**3.** О состоянии книгоиздания и реализации книг на чувашском языке и мерах, необходимых по их защите.
(Содокладчик – директор Чувашского книжного издательства И.Д. Вутлан)
**4.** Об уставе и фонде Чувашского национального конгресса.
(Содокладчик – руководитель Секретариата заместителя Председателя Совета Министров Чувашской Республики Н.В. Пыркин)

**5.** Принятие документов Чувашского национального конгресса.

**6.** Выборы Большого Совета Чувашского национального конгресса.

**7.** Выборы Президента Чувашского национального конгресса.

**8.** Выборы Малого Совета, других рабочих органов Чувашского национального конгресса.

Чувашский национальный конгресс с краткой вступительной речью открыл академик, профессор Чувашской национальной академии М.Р. Федотов.

Первый день председательствовали Б.М. Яковлев – первый заместитель Председателя Верховного Совета Чувашской Республики, В.П. Никитин – заместитель председателя оргкомитета по проведению Чувашского национального конгресса; во второй день – В.П. Мидуков – заместитель Председателя Совета Министров Чувашской Республики, А.П. Хузангай – первый заместитель председателя оргкомитета по проведению Чувашского национального конгресса, председатель Комиссии Верховного Совета Чувашской Республики.

По докладу и содокладами выступили:

Василий Давыдов-Анатри – народный поэт Чувашии, Г.Н. Волков – академик Академии педагогических наук Российской Федерации, А.И. Архипов – управляющий чувашским культурным центром «Тăван» Тюменской области, М.А. Саватнеев – председатель Чувашского культурного центра Камчатской области, В.Е. Симаков – председатель Чувашского общественного центра г. Сызрани Самарской области, С.Н. Падюков – архитектор, бизнесмен из США, Н.П. Медведев – председатель Комиссии Верховного Совета Российской Федерации, Ласло Викар – музыковед из Венгрии, Л.П. Кураков – ректор Чувашского государственного университета, президент Академии наук Чувашии, И.Г. Тарасов – ответственный секретарь Чувашского культурного центра Республики Башкортостан, В.А. Еленкин – председатель сельскохозяйственого предприятия «Кундюковский» Ульяновской области, А.П. Лозовой – заместитель Председателя Верховного Совета Республики Татарстан, Мустин – заместитель Председателя Верховного Совета Республики Башкортостан, А. Абасов – представитель Президента Азербайджана, Ю.В. Еругин – председатель постоянной Комиссии Ульяновского областного Совета народных депутатов, И.И. Стекольщикова – председатель республиканского Совета женщин, В. Тургай – чувашский поэт, И. Ложкина – пенсионерка (Канашский район), З.В. Пенькова – народный депутат из Республики Беларусь и другие.

Был заслушан и утвержден доклад мандатной комиссии (председатель мандатной комиссии – заведующий сектором межнациональных отношений Секретариата Верховного Совета ЧР А.К. Кириллов).

Единодушно было принято решение об объявлении Чувашского национального конгресса Всемирным конгрессом чуваш.

Во второй день делегаты и приглашенные Чувашского национального конгресса работали по секциям (всего 7 секций).

На пленарном заседании были обсуждены и приняты Устав Чувашского национального конгресса, Декларации о статусе ЧНК, о национальном возрождении чувашского народа, Резолюции о государственном суверенитете Чувашской Республики, о Государственном комитете по национальной политике, «О принципах Закона Чувашской Республики «О гражданстве», о концепции Конституции (Основного Закона) Чувашской Республики, о развитии чувашского предпринимательства, о развитии чувашской школы и подготовке национальных кадров, об экологической ситуации, о средствах массовой информации, о возрождении чувашского кино, об учредительстве общечувашской газеты, о защите чувашского национального книгоиздания, о заявлении в Организацию Непредставленных Наций и Народов.

Было принято Обращение к радио «Свободная Европа».

Был избран Большой Совет в составе 66 человек. Президентом Всемирного конгресса чуваш был избран Атнер Петрович Хузангай – народный депутат Чувашской Республики (за 880, против – 5).

На первом организационном заседании Большого Совета были избраны Малый Совет в составе 9 человек и ревизионная комиссия в составе 6 человек.

Гор. Чебоксары, 16 октября 1992 г.

# ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН ДОКУМЕНЧĔСЕМ

## Чăваш халăхĕн наци чĕрĕлĕвĕ çинчен деклараци

– 11-мĕш ĕмĕртен тытăнса 13-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕччен хăйĕн никама пăхăнман Атăлçи Пăлхар патшалăхне тытса тăнă,

– çичĕ çĕр çуллăх хушши наци пусмăрне тата социаллă пусмăра тÿссе пурăннă пулин те пурнăçăн хăйсене евĕрлĕ йăли-йĕркине, тăван чĕлхене, тĕнче курăмне тата наци культурине сыхласа хăварнă,

– 19-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче наци пек йĕркеленнĕ ЧĂВАШ ХАЛĂХĔ,

– хăйĕн шăпине хăй тĕллĕн палăртмалли правăпа усă курса, 1920 çулта çĕнĕрен наци патшалăхне туса хунă.

Политикăра, экономикăра тата культурăра хăй тĕллĕн аталанма кăмăл тунине Чăваш Республикин Патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан деклараципе – Аслă Совет 1990 çулхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕсенче йышăннă Деклараципе – çирĕплетсе панă.

Чăваш наци конгресĕ,

пурнăç шăпи пĕтĕм тĕнчипе сапаланă чăваш халăхĕн представителĕсен чи аслă пухăвĕ пулса тăрса,

çын прависен пĕтĕмĕшле декларацийĕн принципĕсене тĕпе хурса, мĕн пур наци çыннисен прависене тата тĕп ирĕклĕхĕсене хисепленине кăтартса парса,

Атăлпа Урăх тăрăхĕнчи, Раççей Федерацийĕнчи тата Никама пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлĕхĕнчи халăхсен суверенлă прависене сума суса,

ООНăн тĕнчери право документĕсен, Европăри хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе тата килĕштерсе ĕçлес енĕпе ирттернĕ канашлăвăн Юлашкинчен йышăннă акчĕн, çав Канашлăва хутшăннă патшалăхсен представителĕсен Венăри тĕл пулăвĕн Пĕтĕмлетÿ документĕн принципĕсене тĕпе хурса тата мĕн пур халăхсен прависене тĕнчери çак документсенче палăртса хăварнă, хăйсен шалти тата тулашри политика статусне тулашĕнчен хутшăнмасăр хăйсен кăмăлне кайнă пек ирĕклĕн палăртмалли правасене шута илсе,

чăваш наци шăпишĕн пĕтĕм яваплăха туллин ăнланса, чăваш халăхĕн наци туйăмне, мăнаçлăхне çĕнĕрен чĕртсе тăратса, аталантарса пынă май хăйĕн умне çакăн пек тĕп задачăсем кăларса тăратать:

**1**. Чăваш Республикин чăваш халăхĕн пĕртен пĕр наци патшалăх пĕрлешĕвĕ пулнине шута илсе, республикăн патшалăх суверенитетне пур енлĕн ырласа йышăнасси. Чăн-чăн суверенитет принципĕсем Чăваш Республикин патшалăх влаçĕпе управленийĕн аслă органĕсем йышăнакан саккунсенче, экономика, экологи тата культура программисенче тĕп вырăн йышăнма тивĕçлĕ.

**2.** Раççей Федерацийĕнчи мĕн авалтан пурăнакан халăхсем хушшинче йышĕпе виççĕмĕш вырăнта тăракан чăваш нацине пĕтĕçтересси, пĕтĕм чăваш халăхĕн политика тата наци культура пĕрлĕхне çирĕплетесси – çакă паянхи чи пысăк тĕллев. Эпир пурте пĕр пысăк çемье тата хамăрăн тăванлăха туйса тăни пире социаллă пурнăçпа экономикăри йывăрлăхсене çĕнтерме, кăмăл-сипет тата культура традицийĕсене çĕнĕрен чĕртсе тăратма пулăшĕ.

Чăваш Республикин тулашĕнче йышлă пурăнакан чăваш халăхĕ наци районĕсем (наци ял Совечĕсем) е наци культура автономийĕн учрежденийĕсемпе институчĕсене туса хунипе хăйĕн прависене хÿтĕлеме пултарать.

Çĕнĕ условисенче пĕр-пĕтĕм чăваш культури Чăваш Республикинче пурăнакан чăвашсен вăйĕпе çеç мар, мĕн пур çĕрти чăваш нацийĕн вăй-хăвачĕпе усă курса аталанма тивĕçлĕ.

**3.** Хĕвел тухăç Европăри хăйсен патшалăхĕпе пурăннă пирвайхи халăхсенчен пĕри (пăлхар-чăвашсем), тĕрĕксен çемйинчи чи

авалхи тата хӑйсене евӗрлӗ халӑхсенчен пӗри пулнӑ май эпир, чӑвашсем, хамӑрӑн истори ҫул-йӗрне манӑҫа кӑларма тивӗҫлӗ мар. Пирӗн историе, чӗлхене, ӑс-хакӑл культурин пуянлӑхӗсене сыхласа хӑвармалла тата вӗсем 2 пинмӗш ҫул хыҫҫӑн та, ҫӗнӗ эрӑра та пурӑнма тивӗҫлӗ. Наци ӑнланулӑхӗ – пӗтӗм этемлӗхӗн чи пысӑк пӗлтерӗшлӗ пуянлӑхӗсенчен пӗри – пӗтӗм халӑхӑн историпе культура еткерлӗхне пӗлмесӗр, унпа усӑ курмасӑр тата ӑна чун-чӗре витӗр кӑлармасӑр тивӗҫлипе аталанма пултараймасть.

**4.** Чӗлхе пӗтӗм культура ӗҫ-хӗлӗн тӗп шӑнӑрӗ пулса тӑнине ӑнланса, чӑваш чӗлхин социаллӑ никӗсне анлӑлатас тӗллевпе тарӑннӑн ӗҫлемелле. Ҫакна тума чи малтанах унпа общество пурнӑҫӗнче официаллӑ чӗлхе пек тата массӑллӑ информаци хатӗрӗсенче анлӑрах усӑ курмалла. Ҫакӑ влаҫпа управленин патшалӑх органӗсене, ҫавӑн пекех вырӑнти администрацисене Чӗлхе ҫинчен калакан саккуна пӗр сӑмахсӑрах пурнӑҫлама хушать.

**5.** Чӗрӗлӳ тапхӑрӗнче наци шкулӗ уйрӑм вырӑн йышӑнать. Вӑл чӑваш халӑх педагогикин, этикипе халӑх философийӗн традицийӗсене тӗпе хурса вӗрентекен тата воспитани паракан тӗп сыпӑк пулса тӑрать.

**6.** Чӑваш халӑхӗн хӑйсене евӗрлӗ тӗнче курӑмӗ ҫут ҫанталӑкпа тачӑ ҫыхӑннӑ. Ҫын пурӑнакан тавралӑха, ҫут ҫанталӑка хисеплени тата историпе культура ландшафтне сыхласа хӑварма тӑрӑшни ҫинче никӗсленсе тӑрать. Вӑл пур енӗпе те ҫӗнӗ экологи ӑнланулӑхӗн тӗп пайӗ пулса тӑма тата ку чухнехи экологи программисене палӑртса хатӗрленӗ чухне пысӑк пулӑшу пама пултарать.

**7.** Чӑвашсен тӗп пайӗ мӗн ӗмӗртенпех Атӑлпа Урал тӑрӑхӗнче ҫармӑссемпе, ирҫесемпе, мӑкшӑсемпе, тутарсемпе, пушкӑртсемпе, удмуртсемпе, вырӑссемпе тачӑ ҫыхӑну тытса пурӑннине шута илсе, Чӑваш Республикин чӑваш наци прависене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе практикӑлла мерӑсем палӑртса хатӗрлес тӗллевпе тивӗҫлӗ республикӑсемпе тата облаҫсемпе договорсемпе килӗшӳсем тума тивӗҫлӗ.

***

Халӑхсен тӗнчери право документчӗсенче ҫирӗплетсе хӑварнӑ, никам та туртса илме пултарайман прависене тӗпе хурса, Чӑваш наци конгресӗ хӑй чӑваш нацине ҫӗнӗрен ҫӗклесе аталантарас тата ӑна ирӗклӗх, мӗн пур халӑхсемпе пӗр тан правасем ҫӗнсе илме пулӑшас тӗллевпе ҫине тӑрса вӑй хума хатӗр пулни ҫинчен пӗлтерет.

## Чӑваш наци конгресӗн статусӗ ҫинчен деклараци

Чӑваш халӑхӗн представителӗсен аслӑ пухӑвӗ, халӑхсен тӗнчери право документчӗсем халӑха хӑйӗн шӑпине хӑй тӗллӗн палӑртмалли правине хӳтӗленине тӗпе хурса, чӑваш нацине ҫӗнӗрен ҫӗклесе аталантарас тата пӗрлештерсе тӗреклетес енӗпе ӗҫлекен общество организацине – Чӑваш наци конгресне туса хурать.

Чӑваш наци конгресӗн статусне право енчен ЧНК Уставӗнче ҫирӗплетнӗ.

## Чӑваш Республикин Патшалӑх суверенитечӗ ҫинчен резолюци

Чӑваш наци конгресӗ, Патшалӑх суверенитечӗ ҫинчен 1990 ҫулхи юпа уйӑхӗн 24-мӗшӗнче йышӑннӑ декларацин тӗп принципӗсемпе килӗшсе, ҫапла шутлать: республикӑн чӑн-чӑн суверенитечӗ рынок хутшӑнӑвӗсене куҫнӑ тапхӑрта республика гражданӗсен пурнӑҫне тивӗҫлӗ шайра тытса пыма, вӗсен социаллӑ пурнӑҫпа экономикӑри интересӗсене хӳтӗлеме пултарать. Чӑваш Республикин суверенитечӗ ҫавӑн пекех пӗтӗм чӑваш халӑхӗн малашлӑхӗ пулассине те ҫирӗплетет.

Ҫавӑнпа пӗрлех Чӑваш Республикин Патшалӑх суверенитечӗ ҫинчен калакан декларацине йышӑнни малтанхи утӑм ҫеҫ. Суверенитета экономикӑпа политика пурнӑҫӗнчи лару-тӑрӑва йӗркене кӗртнипе тата пурнӑҫа тивӗҫлӗ шайра аталантарнипе ҫирӗплетес тесен сахал мар ӗҫлеме тивет. Чӑваш Республикин Аслӑ Совечӗпе Министрсен Советне чӗнсе каласа, ЧНК ҫапла пӗлтерет:

**1.** Республика суверенитетне ҫирӗплетсе пынӑ май саккунсем палӑртса хатӗрлемелли никӗсе ҫирӗплетмелле, чи малтанах Чӑваш Республикин ҫӗнӗ Конституцине (Тӗп Саккунне) хӑвӑртрах йышӑнмалла.

**2.** Патшалӑх влаҫӗпе управленийӗн федераци органӗсемпе килӗшӳсем туса, Чӑваш Республикин патшалӑх харпӑрлӑхне пӗр тӑхтаса тӑмасӑр уйӑрса ҫирӗплетмелле. Патшалӑх, республика тата муниципалитет харпӑрлӑхне уйӑрса уҫӑмлӑн палӑртни ҫеҫ республика гражданӗсен экономикӑри тӗп интересӗсене тивӗҫтерме пултарать.

**3.** Патшалӑх пурлӑхне халӑха валеҫсе пани тата приватизацилени экономика реформи ирттермелли пысӑк пӗлтерӗшлӗ тапхӑр. Ҫавна май «Чӑваш Республикин гражданлӑхӗ ҫинчен» саккун чӑваш халӑхӗн тата республикӑра пурӑнакан ытти ҫынсен социаллӑ пурнӑҫпа экономикӑри прависене право тӗлӗшӗнчен хӳтӗлеме тивӗҫлӗ.

**4.** Чӑваш Республикин чӑн-чӑн суверенитечӗ ҫавӑн пекех ӗҫ тӑвакан влаҫа ҫирӗплетме хушать. Конституцире (Тӗп Саккунра) палӑртса хӑварнӑ Президент влаҫӗн институтне Чӑваш Республикин Президентне пӗтӗм халӑхпа саккунпа килӗшӳллӗн суйланӑ май пурнӑҫа кӗртмелле.

**5.** Чӑваш Республикин патшалӑх влаҫӗпе управлени органӗсем бюджет палӑртса хатӗрленӗ чухне хӑй тӗллӗнлӗх принципне тӗпе хурса ӗҫлеме тата ҫак принципа тӳрре кӑларма, ҫавӑн пекех налук тытса юлнӑ чухне республикӑн социаллӑ пурнӑҫӗпе экономикӑри лару-тӑрӑвне шута илекен механизм палӑртса хатӗрлеме тивӗҫлӗ. Ҫакӑнсӑр халӑха социаллӑ хӳтлӗх парас тӗлӗшпе мӗнле те пулин ӑнӑҫлӑрах политика пурнӑҫа кӗртсе пыма май ҫук, культурӑна, чӗлхене сыхласа хӑварма, халӑха вӗрентес ӗҫе тата сывлӑха сыхлас ӗҫе аталантарма кирлӗ укҫа-тенкӗ те пулмасть.

**6.** Чӑваш Республикинче пурнӑҫа кӗртекен ҫӗр реформи, пирӗн тӑрӑхра ҫӗр сахал тата халӑх йышӗ ҫав тери пысӑк пулнине шута илсе, уйрӑмах тимлӗ ӗҫлеме хушать. Чӑваш хресченӗ – ял хуҫалӑх продукцине хӑй аллипе туса илекен ҫын – ҫӗр ҫинче чӑн-чӑн хуҫа пулса тӑма тивӗҫлӗ. Кашни ял ҫывӑхӗнчи ҫӗр лаптӑкӗсен йӑлана кӗрсе ҫирӗпленнӗ чиккисене шута илмесен, кӑмӑл тӑвакансене пурне те ҫӗр лаптӑкӗсем уйӑрса памалли йӗрке ялпа хула халӑхӗ хушшинче хирӗҫӳ кӑларасси патне ҫеҫ илсе ҫитерме пултарать. Ҫӗр вӑл наци тӗп пуянлӑхӗ, ҫавӑнпа та ӑна тӑрлавсӑр салатса пӗтерме кирлӗ мар.

**7.** Чӑваш чӗлхин патшалӑх статусӗ чӑн-чӑн суверенитетӑн чи паллӑ пӗлтерӗшлӗ атрибучӗсенчен пӗри пулнине шута илсе, Чӑваш Республикин Аслӑ Совечӗн ҫывӑх вӑхӑтра «Чӑваш Республикин чӗлхесем ҫинчен» саккуна пурнӑҫа кӗртмелли Патшалӑх программине йышӑнмалла. Ҫав программӑра чӑваш чӗлхин малашлӑхне, унӑн социаллӑ тивӗҫӗсене анлӑлатма кирлине, ҫавӑн пекех чӑваш халӑхӗн чӗлхе суверенитетне ҫирӗплетес тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнассине палӑртса хӑвармалла.

**8.** Чӑваш Республики Раҫҫей Федерацийӗпе, суверенлӑ ытти республикӑсемпе тата патшалӑхсемпе тытакан хутшӑнусем енчен пӗр танлӑх прави ҫинче, пӗр-пӗрин экономикӑпа политика интересӗсене шута илни, хальччен йӗркеленнӗ хуҫалӑх ҫыхӑнӑвӗсене сыхласа хӑварни тата аталантарни ҫинче йӗркеленме тивӗҫлӗ.

## Чӑваш Республикин «Гражданлӑх ҫинчен» саккунӗн принципӗсем ҫинчен резолюци

Гражданлӑх институчӗ чӑн-чӑн суверенлӑ патшалӑхӑн тӗп институчӗсенчен пӗри. Гражданлӑх уйрӑм ҫынпа патшалӑх хушшинче право тӗлӗшӗнчен ҫирӗп ҫыхӑну пуррине пӗлтерет, ҫакӑ вӑл пӗр-пӗрин умӗнчи тивӗҫсенче, пӗр-пӗрин прависенче тата пӗр-пӗрин умӗнче яваплӑ пулса тӑнинче палӑрать.

Чӑваш наци конгресӗ Республикӑн патшалӑх суверенитетне ҫирӗплетес тӗллевпе ҫывӑх вӑхӑтра Чӑваш Республикин «Гражданлӑх ҫинчен» саккунне йышӑнмалла тесе шутлать. Ҫав саккунра принциплӑ ҫак йӗрке-тӑрӑва палӑртса хӑварма тивӗҫлӗ:

Чăваш Республикинче кашни çыннăн гражданлăх пулмалла тата никам та туртса илме пултарайман çак правăпа туллин усă курмалли майсем туса хумалла. Чăваш Республикин гражданлăхĕ пуриншĕн те пĕр тан правallă пулмалла, çавна май гражданлăха мĕнле сăлтавсемпе йышăннине шута илмелле мар.

Çак саккун Чăваш Республикин гражданлăхне йышăнмалли сăлтавсене тата йĕркене уçăмлă палăртма тивĕçлĕ. Тĕпрен илсен, ăна çак йĕркепе йышăнма пултараççĕ:

**а)** çуралнипе;
**ă)** ăна йышăннипе;
**б)** гражданлăх панипе.

Çуралнипе гражданлăх йышăннă чухне ачисемпе ашшĕ-амăшĕн гражданлăхĕсем килĕшсе тăма тивĕçлине шута илмелле.

«Гражданлăх çинчен» саккуна йышăннă самант тĕлне республика территорийĕнче яланах, çирĕплетнĕ йĕркене пăхăнса пурăнакан çынсене пурне те Чăваш Республикин гражданĕсем тесе йышăнма тивĕçлĕ. Çавна май вĕсем мĕнле социаллă сийрен тухнине, хăш наци представителĕ, арçын е хĕрарăм пулнине, мĕнле тĕне ĕненнине, мĕнлерех пурлăх тытса тăнине шута илмеççĕ.

Малашне, «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккунăн 3 статйи вăя кĕнĕ хыççăн, гражданлăх панă чухне (Раççей Федерацийĕн гражданĕсене, урăх çĕр-шывсен гражданĕсене, гражданлăхсăр çынсене гражданлăх панă чухне) çак йĕркесене пăхăннине шута илсе ĕçлеме тивĕçлĕ:

**а)** республика территорийĕнче ялан пурăнакан вăхăт 5 çултан кая мар пулмалла;

**ă)** Чăваш Республикин патшалăх чĕлхисене йăлара хутшăнса калаçнин шайĕнче пĕлмелле;

**б)** Чăваш Республикин Конституцийĕн тĕп положенийĕсене пĕлмелле;

**в)** Чăваш Республикин гражданинĕ пулни пирки тупа тумалла.

Чăваш Республикин гражданлăхне йышăнасси уйрăм çыннăн саккунра палăртнă условисене пăхăнса çырнă ыйтăвне пăхса тухнă май пулса иртме тивĕçлĕ.

Историри конкретлă чăнлăхсене шута илсе, Чăваш наци конгресĕ Чăваш Республикин гражданлăх статусне хальхи вăхăтра республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсем те йышăнма пултараççĕ тесе шутлать. Çапла тума уйрăм çын хăй ыйтса çырнă çыру тата Чăваш Республики тивĕçлĕ патшалăхпа договор туни кирлĕ.

Республика умĕнче уйрăмах тава тивĕçлĕ ĕççем тунă çынсем, наука, культура, ÿнер тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем, паллă политика ĕçченĕсем, чаплă спортсменсем тата ыттисем енĕпе Чăваш Республикин гражданлăхне памалли уйрăм тĕслĕхсемпе усă курма пултараççĕ.

Чăваш Республикин гражданинне пĕр вăхăтра икĕ гражданлăх йышăнмашкăн право пама тивĕçлĕ. Çапла тума тивĕçлĕ патшалăхпа çакăн пирки килĕшсе татăлни кирлĕ.

Саккунра патшалăх хăйĕн гражданĕсене, республика тулашĕнче пурăнакан гражданĕсене хÿтĕлемелли тивĕççене, çавăн пекех хăйĕн гражданĕсене саккунсемпе килĕшÿллĕн ытти патшалăха тытса пама чаракан йĕркесене палăртма тивĕçлĕ.

Уйрăм çын гражданлăхран хăй ирĕкĕпе уйрăлма килĕшнĕ е Чăваш Республикин гражданлăхне йышăнасси çинчен калакан решение пăрахăçланă чухне çеç Чăваш Республикин гражданинĕ пулма пăрахаççĕ.

Республика Президенчĕ Чăваш Республикин гражданлăхĕн ыйтăвĕсене татса пама тивĕçлĕ чи аслă патшалăх органĕ пулса тăрать.

## Чăваш Республикин Конституцийĕн (Тĕп Саккунĕн) концепцийĕ çинчен резолюци

Чăваш наци конгресĕ, Чăваш Республикин – суверенлă демократилле право патшалăхĕн – статусне палăртма кирлине шута илсе, Чăваш Республикин Патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан деклараци принципĕсене тата Чăваш Республикин Конституцине (Тĕп Саккунне) улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси çинчен 1990–1992 çулсенче йышăннă саккунсене тĕпе хурса, çапла шутлать: республикăра Конституципе ĕçлессине хăвăртлатмалла тата çывăх вăхăтра Чăваш Республикин çĕнĕ Конституцийĕн (Тĕп Саккунĕн) проектне пĕтĕм халăхпа сÿтсе явмашкăн тăратмалла.

Чăваш Республикин çĕнĕ Конституцийĕн проектĕнче çак положенисене палăртса хăварсан вырăнлă пулмалла:

**1.** Чăваш Республикин патшалăх суверенитетне республикăн патшалăх влаçĕ хăйĕн пĕтĕм территорийĕнче пуринчен те аслăрах пулнине, хăй тĕллĕн ĕçленине, никама та пăхăнса тăманнине пĕлтерни вырăнне хурса анлăн тата конкретлă ăнланмалла. Çакă вăл чăваш халăхĕн хăйĕн шăпине хăй тĕллĕн палăртмалли тĕп правинчен тухса тăрать.

**2.** Чăваш Республикин Конституцийĕнче республикăн мĕн пур гражданĕсене тĕп правасемпе ирĕклĕхсем панине, çавăн пекех гражданинăн тата патшалăхăн пĕр-пĕрин умĕнчи тивĕçĕсене шанчăклăн çирĕплетсе хăвармалла. Çавна май çын прависемпе ирĕклĕхĕсем чи малти вырăнта пулма тивĕçлĕ, çакă уйрăм çынна республикăн политикăпа экономика пурнăçне хастар хутшăнма пулăшать. Харпăрлăх тата экономикăри ирĕклĕх прависем Конституцири правасемпе ирĕклĕхсен шутне кĕме тивĕçлĕ.

**3.** Чăваш Республикин Аслă Совечĕ хăйĕн саккунсем палăртса хатĕрлес ĕçĕнче чи малтанах Чăваш Республикин Тĕп Сакунне çирĕп пăхăнать тата тĕпе хурать. Конституцире çирĕплетнĕ нормăсем ытти мĕн пур саккунсенчен тата саккунсен шутне кĕртнĕ актсенчен çÿлерех тăраççĕ тата вĕсем Чăваш Республикин пĕтĕм территорийĕнче тÿрремĕнех витĕм кÿме пултараççĕ.

**4.** Чăваш Республикин Конституцийĕнче халăх влаçĕн уçăмлă механизмне палăртса хăвармалла, вăл республика гражданĕсене ирĕклĕ, пĕр тан правallă, тÿрремĕнех хутшăнса тата вăрттăн суйлав ирттерсе хăйĕн представителĕсене патшалăх влаçĕн органĕсене суйлама май парать.

Патшалăх институчĕсен пĕтĕм системин тытăмĕнче тата ĕç-хĕлĕнче пĕтĕм влаçа саккунсем палăртса хатĕрлекен, ĕç тăвакан влаççем тата суд влаçĕ çине пайламалли принципа пĕр тикĕс пурнăça кĕртсе пыраççĕ.

Чăваш Республикинче пĕтĕм халăхпа суйланă Президент патшалăх пуçлăхĕ пулма тивĕçлĕ. Вăл çыннăн прависемпе ирĕклĕхĕсене шанчăклă хÿтĕлекен, патшалăх суверенитетне çирĕплетекен тата Чăваш Республикин Конституцийĕпе саккунĕсене çирĕп пăхăнакан пуçлăх пулса тăрать.

Чăваш Республикин Аслă Совечĕ – республикăн халăх представителĕсенчен тăракан тата саккунсем палăртса хатĕрлес енĕпе ĕçлекен пĕртен пĕр аслă орган. Унта яланхи никĕс çинче чăн-чăн профессионалсем пек ĕçлекен халăх депутачĕсен пысăках мар йышне (50 çынтан ытла мар) кĕртмелле.

Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕ шутне Чăваш Республикин Правительстви (Министрсен кабинечĕ) тата Президент туса хуракан координаци-канашлу органĕсем кĕме пултараççĕ.

Чăваш Республикин патшалăх влаçĕпе управленин кашни органĕн полномочийĕсене, вĕсем мĕнле ыйтусемпе ĕçлеме тивĕçлине, вĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемелли право механизмне Чăваш Республикин Конституцийĕнче çирĕплетсе хăвараççĕ.

Чăваш Республикин суд системи республикăра чăнласах влаçăн никама пăхăнман турачĕ пулса тăма тата мĕн пур субъектсене право тĕлĕшĕнчен туллин хÿтĕлеме тивĕçлĕ. Çавна май обществăпа патшалăх пурнăçĕнче суд тата юстици пĕлтерĕшĕ палăрмаллах ÿсме тивĕçлĕ.

**5.** Чăваш Республикин Конституцийĕнче патшалăх влаçĕпе вырăнти самоуправлени шайĕсене уçăмлă палăртма тивĕçлĕ.

**6.** Чăваш Республикин Конституцийĕнче чăваш чĕлхине – республика территорийĕнчи патшалăх чĕлхи пек, вырăс чĕлхине Раççей

Федерацийĕн официаллă чĕлхи тата нацисем хушшинче хутшăнса пурăнмалли чĕлхе пек палăртса хăвармалла. Патшалăх республикăра пурăнакан ытти наци представителĕсене – тутарсене, ирçесене, вырăссене, çармăссене – хăйсен тăван чĕлхипе пĕлӳ илмешкĕн, наци культурине аталантарма, наци культура автономийĕн ытти прависене пурнăçа кĕртме кирлĕ майсем туса панине çирĕплетсе хăварма тивĕçлĕ.

**7.** Суверенлă ытти республикăсемпе (патшалăхсемпе) тытакан хутшăнусене договорсем тунипе, экономикăра тата культурăра пĕр-пĕриншĕн усăллă килĕштерсе ĕçлемелли, пĕр-пĕрин суверенитетне хисеплемелли тата пĕр-пĕрин шалти ĕçĕсене хутшăнманнине çирĕплетекен принципсем çинче йĕркелеме тивĕçлĕ.

**8.** Патшалăхăн влаç полномочийĕсен пĕр пайне Чăваш Республики хăйĕн ирĕкĕпе Раççей Федерацине шанса пама пултарать. Çакна вăл Федераци Договорĕпе, Чăваш Республикипе Раççей Федерацийĕ хушшинчи патшалăх хутшăнăвĕсем çинчен калакан договорпа килĕшӳллĕн тата икĕ енлĕ тăвакан ытти килĕшӳсене тĕпе хурса тăвать.

Чăваш Республикин Раççей Федерацийĕн йышĕнчен ирĕклĕ йĕркепе тухмалли прави сыхланса юлма тивĕçлĕ.

**9.** Чăваш Республикин Конституцийĕ тата саккунĕсем республикăн пĕтĕм территорийĕнче пуринчен те аслăрах пулса тăраççĕ.

## Чăваш предприниматель ĕçне аталантарасси çинчен резолюци

**1.** Чăваш наци конгресĕ çакна палăртать: Чăваш Республикинче тата мĕн пур чăвашсен предприниматель ĕçне аталантарни Чăваш Республикишĕн усăллă, çакă регионсен хушшинче таварсем улăштарса илме, информаципе культура ыйтăвĕсемпе çыхăну йĕркелеме, республика экономикине пĕр тикĕс аталантарма, чăвашсен хăйсен наци культурине аталантарма ăнăçлă йĕрке-тăру туса хума пулăшать.

Конгресс кирек мĕнле наци представителĕ пулсан та тата кирек ăçта пурăнсан та Чăваш Ене хăйĕн тăван çурчĕ тесе шутлакан ĕçлĕ çынсене пурне те чăваш предприниматель ĕçне аталантармашкăн активлă хутшăнма чĕнсе калать.

**2.** Чăваш наци конгресĕ Чăваш Республикин Министрсен Советне Мускав, Санкт-Петербург, Раççей Федерацийĕнчи тата Никама Пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлĕхĕнчи ытти пысăк хуласен администрацийĕсемпе пĕрле хăйсен хулисенче Чăваш наци сутуилӳпе культура центрĕсем уçас ыйтăва тишкерме сĕнет. Çав центрсем патшалăхăн (Чăваш Республикин) хуçалăх расчечĕпе ĕçлекен хăй тӳлевлĕх предприятийĕсем пек, уйрăм çын харпăрлăхĕ е пĕрлештернĕ харпăрлăх пек аталанма пултараççĕ.

Патшалăх влаçĕпе управлени органĕсемпе, Чăваш Енри тата хăйсем ĕçлекен территорисенчи хуçалăх çыннисемпе, предпринимательсемпе тăтăшах çыхăну тытса ĕçлесе, суту-илӳпе культура центрĕсем регионсемпе нацисен хушшинчи культура çыхăнăвĕсене вăйлатас, тавар улăштарас ыйтусене татса парас, Чăваш Республикин экономика интересĕсемпе килĕшӳллĕн хуçалăх, снабжени ыйтăвĕсемпе ытти ыйтусене татса парас енĕпе паллă вырăн йышăнма тивĕçлĕ.

Суту-илӳпе культура центрĕсенче ĕçлемешкĕн тивĕçлĕ территорисенче ялан пурăнакан пултаруллă чăвашсене хутшăнтарма пулать.

**3.** Конгресс çапла шутлать: Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономикăри, халăх йышĕпе тата географипе çыхăннă йĕрке-тăрăва шута илес пулсан, предприниматель ĕçне аталантарни республикăшăн çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çак тĕллевпе çăмăллатнă майсемпе кивçен укçа уйăрса памалли политика тытса пымалла, çĕнĕрен йĕркелекен предприниматель тытăмĕсенчен пĕчĕкрех налук илме, экономикăн пысăк малашлăхлă отраслĕсенче бизнес-проектсене конкурс тăрăх çăмăллатнă майсемпе укçа-тенкĕ уйăрса пама тата предприниматель ĕçне хавхалантаракан ытти меслетсем пурнăçа кĕртме палăртмалла.

**4.** Конгресс Чăваш Республикин «Пĕчĕк предприниматель ĕçне патшалăх енчен пулăшса тăрасси тата хӳтĕлесси» çинчен саккун палăртса хатĕрлеме тата йышăнма кирлине палăртать, çавăн пекех республикăра предприниматель ĕçне пулăшса тăракан фонд туса хурассине хăвăртлатни пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе шутлать.

## Чăваш Республикин тата чăваш халăхĕ йышлă пурăнакан вырăнсенчи экологи тĕлĕшĕнчи лару-тăру çинчен резолюци

Промышленноç производствинче кивĕ технологипе усă курнипе, тасатакан сооруженисем ăнăçлă ĕçлейменнипе, ял хуçалăхĕнче минерал удобренийĕсемпе тата наркăмăшлă химикатсемпе тĕрĕс мар усă курнипе, хуласене экологи требованийĕсене шута илмесĕр аталантарнипе, çĕр ĕç требованийĕсене пăснипе, шыв эрозийĕ сарăлса пынипе, вăрмансене йĕркесĕр касса пĕтернипе, çавăн пекех тискер кайăксемпе ӳсен-тăран тĕнчин пуянлăхне пĕр шелсĕр пĕтерсе пынипе экологи тĕлĕшĕнчен хăрушла лару-тăру пулса тăнине шута илсе Чăваш наци конгресĕ çапла йышăнать:

**1.** Чăваш Республикин Аслă Советне Шупашкарти «Химпром» производство пĕрлешĕвĕнче хими хĕç-пăшалне пĕтерекен объекта вырнаçтарассине татăклă хирĕçлеме ыйтас. Çавна май халăх йышĕ пысăк пулнине (пĕр тăваткал километр çине 72 çын тивнине), Атăл тата Мăн Çавал шывĕсем Шупашкарти «Химпром» производство пĕрлешĕвĕн çывăхĕнче пулнине, çавăн пекех çывăхранах республика территорийĕ урлă иртекен газопровод тата нефтепровод хывнине, Шупашкарта тата çывăхри ялсенче историпе культура объекчĕсем пуррине, Атăл леш енче Пĕтĕм Раççей пĕлтерĕшлĕ санатори-курорт зони вырнаçнине, чăваш сăрчĕсем çинчи юман вăрманĕсен пахалăхне шута илмелле.

**2.** Чăваш Республикин Министрсен Советне çапла тума сĕнес: республикăн мĕн пур районĕсен территорийĕнче çĕрсене инвентаризацилес ĕçе йĕркелемелле тата юрăхсăра тухнă лаптăксене сухалакан çĕрсен шутĕнчен кăлармалла тата паха йывăçсемпе йывăç тĕмĕсем лартса хăварма уйăрмалла;

чĕр чунсен тĕнчине пурăнма май паракан условисене лайăхлатас тата ял хуçалăхне аталантарма сывă микроклимат туса хурас тĕллевпе республика территорийĕнчи вăрмансен лаптăкĕсене 40 процента çитермелле;

1995 çулччен республикăн çут çанталăк ресурсĕсене инвентаризацилес ĕçе вĕçлемелле тата çав хыпарсене даннăйсен компьютер банкне хывмалла. Планлас тата проектлас тĕлĕшпе тăвакан ĕççене пурне те малашне йĕри-тавралăх тата пĕтĕм республикăн, çавăн пекех уйрăм районсемпе хуласен çут çанталăк ресурсĕсем мĕнле шайра пулнине шута илсе, компьютера кĕртсе хăварнă информаципе туллин усă курса йĕркелемелле:

Республика территорийĕнче вырнаçтарма палăртнă пысăк объектсене, йĕри-тавралăха сиен кӳме тата халăх сывлăхĕ умне чăн-чăн хăрушлăх кăларса тăратма пултаракан объектсене планлас тата проектлас ĕçе пĕтĕм халăх референдумне иртternĕ хыççăн тин йĕркелемелле;

1992 çулхи ака уйăхĕн 3-мĕшĕсенче пулса иртнĕ авари вăхăтĕнче атмосферăна хлор юхса тухнине тата çав территорире тăпра тата çĕр айĕнчи шывсем хими япалисемпе вараланнине шута илсе, Шупашкарти «Химпром» производство пĕрлешĕвĕ çывăхĕнчи 25 километрлă радиусри территорие экологи тĕлĕшĕнчен хăрушла йывăр лару-тăрăва лекнĕ зона тесе пĕлтермелле.

**3.** Чăваш Республикин Экологипе çут çанталăк ресурсĕсен министерствин çапла тумалла:

мĕн пур предприятисене технологи требованийĕсемпе экологи нормативĕсене çирĕп пурнăçлаттарма тăрăшмалла;

Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республикин тавралăха сыхлас тĕлĕшпе йышăннă саккунĕсене пăсакансене пурне те каçармасăр явап тыттармалла;

районсемпе хуласен бюджечĕсене çут çанталăкпа усă куракансенчен килсе тăракан укçа-тенкĕпе усă курса, 1994 çулччен пĕчĕк юхан шывсем-

пе кӳлĕсен шыв сыхлакан зонисен чиккисене палăртас ĕçе вĕçлемелле тата юхан шывсемпе кӳлĕсем çуммĕнче уйăрса панă шыв сыхлакан территорисенче çарансем йĕркелемелле тата йывăç-тĕм лартмалла;

Раççей Наукăсен академийĕн Тĕп ботаника сачĕн Шупашкарти филиалĕнче республика территорийĕнчи сăртсем çинче юман вăрманĕсене тишкерес тĕлĕшпе ĕçлекен наука центрĕ туса хумалла тата вĕсене пуянлатса пырас, сыхласа хăварас тĕллевпе наука тĕлĕшĕнчен никĕсленĕ сĕнӳсем палăртса хатĕрлемелле;

Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕн 1991 çулхи авăн уйăхĕн 26-мĕшĕсенче йышăннă постановленийĕпе килĕшӳллĕн Шăмăршăн механизациленĕ вăрман хуçалăхĕн никĕсĕ çинче чăваш наци çут çанталăкĕн «Чăваш вăрманĕ» паркне йĕркелес тĕлĕшпе малалла ĕçлемелле;

Чăваш Республикин карттине – унăн территорийĕ радиоактивлă элементсемпе тата йывăр металсен тăварĕсемпе сиенленнине уçăмлă кăтартса паракан карттă – туса хатĕрлемелле.

**4.** Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн Шупашкар хулине аталантармалли концепцие пăхса тухмалла тата Чăваш Республикин Экологипе çут çанталăк ресурсĕсен министерствин экологи экспертизипе нормăлас ĕçĕн управленийĕ тунă заключенире çырса хунă сĕнӳсемпе асăрхаттарусене шута илсе, 1995 çул пуçламăшĕ тĕлне Шупашкар хулине аталантармалли тĕп планăн çĕнĕ проектне палăртса хатĕрлемелле.

**5.** Чăваш халăхĕ пурăнакан облаçсемпе республикăсен правительствисене тата чăвашсем пурăнакан вырăнти администрацисене чăваш халăхĕ йышлă пурăнакан районсенчи экологи тĕлĕшĕнчи лару-тăру карттине палăртса хатĕрлесе Чăваш наци конгресĕн Канашне тăратма ыйтас.

## Наци политики енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ çинчен резолюци

Чăваш Республикин патшалăх управленийĕн тытăмĕсем урлă Чăваш Республикин мĕн пур халăхсен культура, экономика, социаллă прависене пурнăçа кĕртес тата чăваш диаспорин наци культура интересĕсене тивĕçтерес тĕллевпе Чăваш наци конгресĕ çапла йышăнать:

**1.** Чăваш Республикин Аслă Советне Правительство тытăмĕнче Наци политики енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ туса хума ыйтас. Çак комитет хăйĕн ĕçне çак тĕп çул-йĕрсемпе туса пыма тивĕçлĕ:

республикăн наци патшалăх тытăмĕн ыйтăвĕсем тăрăх Чăваш Республикин патшалăх влаçĕпе управленин мĕн пур шайри органĕсемпе килĕштерсе ĕçлет, наци патшалăх тытăмне çĕнетсе лайăхлатас тĕлĕшпе сĕнӳсем палăртса хатĕрлет;

наци кадрĕсем вĕрентсе хатĕрлессине йĕркелет тата координацилесе тăрать;

наци культурипе вĕренĕве, наука ĕçне, йăлана кĕнĕ промысласене аталантармалли туртăмсене тишкерет, республика правительствине вĕсене аталантарас енĕпе сĕнӳсем хатĕрлесе тăратать тата аталану ĕçне пĕтĕмлетет;

нацисен хушшинчи хутшăнусене йĕркелесе тăрать, вĕсене аталантарас енĕпе сĕнӳсем хатĕрлет тата саккунсем хатĕрленĕ чухне тивĕçлĕ сĕнӳсем тăратать;

«Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккуна пурнăçлас тĕлĕшпе учрежденисен, организацисен, вĕренӳ системин ĕçне йĕркелет тата координацилесе тăрать, методикăсемпе пособисем хатĕрлет, малта пыракан паха опыта тĕпчесе сарать;

саккунпа килĕшӳллĕн халăх йышĕпе çыхăннă лару-тăрăва йĕркелесе тăрать;

тĕрлĕ проблемăсемпе общество шухăшне тишкерес ĕçе йĕркелет;

наци издательствине чăваш кĕнекипе суту-илӳ тăвас ĕçре массăллă информаци хатĕрĕсене пулăшса тăрать, вĕсен ĕçне координацилет, пурлăхпа техника никĕсне вăйлатма пулăшать;

çителĕклĕ информаци парса тăрас тата культура çыхăнăвĕсем йĕркелес тĕлĕшпе наци программисемпе халăхсен пĕрлехи программисене палăртса хатĕрлет, вĕсене пурнăçлас ĕçе йĕркелет;

чăваш халăхĕн истори еткерлĕхне, традицийĕсемпе опытне тишкерессине тата пĕтĕмлетессине координацилет;

этнос е нацисен ыйтăвĕсемпе, экологи, йăла, культура ыйтăвĕсемпе ĕçлекен общество юхăмĕсене, организацисене, обществăсене республикăра, çавăн пекех унăн тулашĕнче саккунпа килĕшӳллĕн пулăшса тăрать;

Чăваш Республикин тулашĕнче пурăнакан чăвашсемпе вĕсен ушкăнĕсен культура ĕçне вăйлатма пулăшать, çакна вăл договорсемпе килĕшӳсем туса, наци культура автономийĕн механизмне пурнăçа кĕртнипе тăвать;

саккунсене пурнăçланине хăйĕн компетенцийĕпе килĕшӳллĕн тĕрĕслесе тăрать.

**2.** Наци политики енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ хăйĕн задачисемпе килĕшӳллĕн республикăри патшалăх влаçĕпе управленин ытти органĕсемпе пĕрле тата хăйĕн компетенцийĕн шайĕнче çапла тăвать:

нацисен хушшинчи хутшăнусенчи туртăмсене тишкерес, вăхăтра палăртас ĕçе йĕркелет, çивĕч лару-тăрăва йĕркене кĕртес тĕлĕшпе мерăсем йышăнать;

республика Президентне тата Правительствине республикăра тухса тăракан проблемăсем çинчен тăтăшах пĕлтерсе тăрать;

наци культура организацийĕсемпе, юхăмĕсемпе, политика партийĕсемпе тата çавăн пекех унăн тулашĕнче хутшăнусем йĕркеленĕ чухне Правительство ячĕпе ĕçлет, Правительство ячĕпе договорсем тăвать тата тивĕçлĕ ытти ĕçсем тăвать, хăй йышăннă тивĕçсемшĕн яваплă пулса тăрать.

**3.** Наци политики енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ ЧНКпа тата обществăн ытти пĕрлешĕвĕсемпе тачă килĕштерсе ĕçлеме тивĕçлĕ. ЧНКн Кĕçĕн Канашĕн членĕсем Патшалăх комитечĕн коллегине кĕме пултараççĕ.

**4.** Патшалăх комитечĕн аппаратне Министрсен Совечĕн шалти резервĕсен шучĕпе йĕркелени, кирлĕ укçа-тенке патшалăх управленийĕн органĕсене тытса тăма республика бюджетĕнчен уйăракан укçа-тенкĕ шутĕнчен тупни вырăнлă тесе шутлас.

**5.** Наци аталанăвĕнче патшалăхăн пĕрлехи политикине пурнăçа кĕртсе пырас, çак ыйтусемпе Правительствăпа тата вырăнти органсемпе килĕштерсе ĕçлес тĕллевпе вырăнти администрацисен пуçлăхĕсене Наци политики енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн тытăмĕсене йĕркелеме сĕнес.

## Массăллă информаци хатĕрĕсем çинчен резолюци

Чăвашсем Раççей Федерацийĕн пĕтĕм территорийĕнче, НППП çĕршывĕсенче тата ытти патшалăхсенче вырнаçса тухнине, чăваш нацийĕн çурри çеç Чăваш Республикин территорийĕнче пурăннине шута илес пулсан, массăллă информаци хатĕрĕсем чăваш халăхне пĕтĕçтерес, республикăра пулса иртекен ĕçсем тата наци культурипе ӳнер ĕçĕнчи лару-тăру çинчен халăха тăван чĕлхепе хыпар пĕлтерсе тăрас енĕпе ăнăçлă ĕçлени калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Çакна тĕпе хурса Чăваш наци конгресĕ çапла йышăнать:

**1.** 1993 çулта наци тĕп кăларăмĕсене – чăваш хаçачĕсемпе журналĕсене сыхласа хăвармалла, республикăн çак ыйтупа çыхăннă министерствисемпе ведомствисен вара вĕсен çумучредителĕсем пулса тăмалла.

Чăваш Республикин Пичетпе информаци патшалăх комитечĕн, Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Массăллă информаци хатĕрĕсемпе, общество организацийĕсемпе тата граждансен юхăмĕсемпе çыхăну тытас, общество шухăш-кăмăлне тишкерес енĕпе ĕçлекен яланхи комиссийĕпе пĕрле чăваш хаçат-журналне рынок экономикин условийĕсенче 1993–1995 çулсенче аталантармалли концепци палăртса хатĕрлемелле тата ăна ЧР Министрсен Советне пăхса тухма тăратмалла.

**2.** Чăваш телерадиокомпанийĕн чăвашла хатĕрлекен радиопа телеви-

дени передачисен вăхăтне талăкра 6–7 сехет тарăн тăсмалла тата çав передачăсене республикăн пĕтĕм территорине çитерме тăрăшмалла.

Чăваш Республикин уйрăм ТВ-каналне уçас ыйтăва татса памалла.

**3.** Чăваш радио передачисене республика тулашне трансляцилемелли задачăсене татса парас тесен, вăтам хумлă диапазонри передачăсем çумне хушса, Чăваш Республикин территорийĕнче 3–30 мгц (100–10 метрлă хумсем çинче) кĕске хумлă передатчиксем тума тăрăшмалла. Кĕске хумлă передатчик çавăн пекех Шупашкартан вăтам хумлă передатчик программине йышăнса пама пултарнă пулĕччĕ.

Республика тулашĕнчи чăвашсем валли передачăсем йĕркелекен радиостанцие «Тăванлăх» («Чăваш сасси...») ят пама пулать.

**4.** Общественноçа, республика тулашĕнчи массăллă информаци хатĕрĕсене, Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен патшалăх влаçĕпе управлени органĕсене, НПППри çĕршывсене тата ытти патшалăхсене васкавлă йĕркепе объективлă хыпар пĕлтерсе тăрас тĕллевпе Чăваш Республикин Информаципе пичет патшалăх комитечĕ çумĕнче «ИНТЕРХЫПАР» информаци агентствине туса хумалла тата ăна çыхăнăвăн ку чухнехи пурлăхпа техника хатĕрĕсемпе – телекспа, телефакспа, компьютерпа, телефонсемпе тата ыттисемпе тивĕçтермелле.

**5.** Чăваш Республикин Вĕренӳ, наукăпа аслă шкул министерствин Чăваш телерадиокомпанийĕпе пĕрле массăллă информаци хатĕрĕсем валли журналистсен наци кадрĕсене хатĕрлемелли системăна палăртмалла.

**6.** Республикăн кăнтăр пайĕнче пурăнакан тутар халăхне тутар телевиденийĕн программисене кăтартас тĕллевпе Пăчăрлă Пашьел, Палтиел, Ыхраçырми ялĕсенче 1993–1994 çулсенче ретрансляторсем туса лартма палăртмалла. Çак проекта пурнăçа кĕртме Чăваш Республикипе Тутарстан Республикин пĕрле укçа-тенкĕ уйăрмалли майсем шырамалла.

**7.** Чăваш телерадиокомпанийĕн чăваш халăхĕ йышлă пурăнахан республикăсемпе тата облаçсемпе, уйрăмах Уралпа Атăл тăрăхĕнчи республикăсемпе тата облаçсемпе пĕр-пĕрин патĕнче передачăсем хатĕрлесе эфира кăларассине аталантармалла тата анлăн пурнăçа кĕртсе пымалла.

## Чăваш шкулне аталантарасси тата наци кадрĕсем хатĕрлесси çинчен резолюци

Чăваш наци конгресĕ çакна палăртать:

Чăваш халăхĕн пысăк пайĕ халĕ хăйĕн тĕп тĕввинчен – Чăваш Республикинчен – инçетре сапаланса пурăнать, чăвашсен пурнăçĕ çинчен куллен-кун хыпар илсе тăраймасть, культура çитĕнĕвĕсемпе усă кураймасть, çакна май тăван халăх тымарĕсенчен татăлса пырать. Халăхăн тепĕр пайĕ, уйрăмах çамрăксен, хуласене пурăнма куçнă май тăван чĕлхепе йăла-йĕркене манса пыраççĕ. Патшалăх, вырăнти тытăм органĕсем пĕчĕк йышлă тата вакланса пурăнакан халăхсен вĕренӳпе культура ыйтăвĕсене тивĕçтерме тимлемеççĕ. Çавна пула чăвашсем вырăсланса е урăх халăхсем хушшинче çухалса каясси хăрушла вăйланать. Раççейĕн пиртен инçетри кĕтесĕсенче тата урăх çĕр-шывсенче пурăнакан чăвашсем хăйсен наци паллисене – чĕлхине, культурине уйрăмах хăвăрт çухатса пыраççĕ. Чăвашсем нумайранпа йышлăн пурăнакан кӳршĕ облаçсемпе республикăсенче – Самарпа Ульяновск тăрăхĕсенче, Тутарстанпа Пушкăртстанра тата ытти çĕрсенче ĕлĕкрех тулли вăйпа ĕçлесе тăнă культурăпа çут ĕç вучахĕсем сӳнселарнă темелле. Ним иккĕленмесĕрех çапла калама пулать: асăннă аркатуллă сăлтавсене сирмесен пирĕн халăх, чăвашлăха çухатса, кăкне-тĕлне пĕлмен манкурта тухассине чарма та май килмĕ. Хуласенче, пиртен инçетре пурăнакан чăваш ялĕсенче хăрушлăх уйрăмах пысăк. Сăмах халĕ чăваш культурине, чăваш халăхне вуçех пĕтесрен çăлассиçинчен пырать. Шкулти вĕренӳ кадрĕсене хатĕрлессине Раççей тата хамăр республика шайĕнче йĕркеленин хальхи шайĕ-тăрăмĕ, чи малтан – халăхăн ăс-хакăлпа кăмăл-туйăмне тивекен ĕçсенче, Чăваш Республикин халăхăн ыйтăвĕсене тивĕçтерейместь, инçетре пурăнакан чăвашсен нушисене вара пачах та шута илмест. Çавна май инçетри чăваш шкулĕсенче тăван чĕлхепе историе, культурăна вĕрентме учительсем çитмеççĕ, вĕренмелли кĕнекесем, ытти хатĕрсем çукпа пĕрех. Вăрçă хыççăнхи çулсенчен пуçласа чăвашсем йышлă пурăнакан облаçсемпе республикăсенче чăваш учителĕсем вĕрентсе хатĕрлес, чăваш кĕнеки, хаçат-журналĕ кăларас ĕç путланса ларчĕ. 20–30-мĕш çулсенче унти нумай-нумай чăваш ялĕнче шкул ачисем тăван чĕлхепе вĕренсе кĕçĕн, тулли мар вăтам е вăтам пĕлӳ те илнĕ, чăваш чĕлхипе литератури вĕрентес ĕç çӳллĕ шайра тăнă. Халĕ вара ку шкулсем вырăс чĕлхи çине куçнă. Чăваш чĕлхине предмет шучĕпе вĕрентесси те чаксах пырать.

Çӳлерех каланине асра тытса Чăваш наци конгресĕ çапла шутлать: чăваш шкулне çĕнĕрен чĕртсе аталантарасси чăваш халăхне пĕтесрен çăлса хăвармалли, ăна малашне ăнăçлăн аталантармалли ĕç пулса тăрать. Чăваш шкулĕ чăннипех этемлĕх цивилизацине тивĕçлĕ гуманизм халалĕпе чĕрĕлсе çĕнелтĕр тесен, çакна çамрăк ăрăва вĕрентсе ăс памалли халăх традицийĕсен никĕсĕ çинче туса пымалла. Чăваш халăхĕн педагогика традицийĕсене И.Я. Яковлев хăйĕн шкулĕнче ăнăçлă пурнăçласа пынă, вăл паянхи шкулшăн чи паха тĕслĕх пулса тăрать.

Чăваш шкулне чĕртсе аталантарассине, наци кадрĕсем хатĕрлессине пĕтĕм халăх пурнăçĕшĕн, унăн пуласлăхĕшĕн чи пысăк пĕлтерĕшлĕ тĕллев вырăнне хурса, Чăваш наци конгресĕ пĕр вăраха ямасăр, васкавлă йĕркепе çак-çак ĕçсене тума кирлĕ тесе йышăнать:

– халăх вĕренĕвĕ валли патшалăх мулĕнчен укçа-тенкĕпе тĕрлĕ пурлăх тĕнчери аталаннă çĕр-шывсенчи чухлĕ (пĕтĕм наци тупăшĕнчи тӳпине кура) уйăрса памалла; çакна Раççей Федерацийĕн, Чăваш Республикин тата чăвашсем йышлăн пурăнакан облаçсемпе республикăсен бюджечĕсене çырса хумалла. Чăваш наци конгресĕн, Чăваш Республикин Аслă Канашĕпе ĕç тăвакан влаç органĕсен, Чăваш Енри тата чăвашсем йышлăн пурăнакан ытти вырăнсенчи общество пĕрлешĕвĕсен хăйсемпе шай тăракан тивĕçлĕ органсемпе организацисене çак йышăнăва пурнăçлас тĕллевпе тивĕçлĕ сĕнӳсем хатĕрлесе тăратмалла. Раççей Федерацийĕн Аслă Канашне Чăваш Республикинчен тата чăвашсем пурăнакан ытти вырăнсенчен суйланă халăх депутачĕсен, саккун кăларма пуçару туса, ваккăн пурăнакан халăхсен наци шкулĕсене çăлса хăварма ятарлă фонд йĕркелеме ыйтмалла, çак ыйтăва пĕтĕм тĕнче шайĕнче пăхса тухса татса памашкăн кирлĕ ĕçсем тумалла;

– çамрăксен пурнăça кĕме пур енчен те лайăх хатĕрленсе ӳсчĕр, чăнчăн гражданӗсем – патриотсем, тивĕçлĕ пĕлӳ илнĕ çынсем пулччăр тесе шкулта вĕренӳ ĕçне, кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ĕç тĕпрен çĕнĕлле йĕркелемелле. Çак тĕллевпе Раççей Федерацийĕнчи тата Чăваш Республикин, çавăн пекех ытти наци республикисенчи чĕлхе саккунĕсене пурнăçламалла, кашни çын, кашни халăх харпăр хăй чĕлхине, культурине вĕренсе вĕсемпе ирĕклĕн усă курма пултарни çинчен конституцисенче çырса çирĕплетнине çирĕп тытса пымалла. Чăваш наци шкулне чĕртсе аталантармалли çĕнĕ концепцие тата Чăваш Республикин çак тĕллевпе хатĕрленĕ Патшалăх программине хăвăртрах ĕçе кĕртмелле. Шкул ĕçне аталантарма, кадрсем хатĕрлеме план тунă чухне çак ĕçĕн пур сыпăкĕнче те Чăваш Республикин тулашĕнче пурăнакан чăвашсен нушисене туллин шута илмелле;

– республика тулашĕнчи чăваш шкулĕсене пулăшма васкавлă та витĕмлĕ мерăсем йышăнмалла; тăван чĕлхене, историе, культурăна вĕрентме пăрахнă шкулсенче çак ĕçе çĕнĕрен пуçарса ямалла; учительсем, наци интеллигенцийĕн кадрĕсем хатĕрлес ĕçе вăйлатмашкăн лицей йышши ятарлă шкулсем, классем, интернатсем йĕркелемелле;

– чăвашсем йышлăн, анчах сапаланчăк пурăнакан вырăнсенче, чи малтан индустри центрĕсемпе ытти хуласенче, вырăнти майсене уяса, ачасене тата çитĕннисене тăван чĕлхе вĕрентмелли, Чăваш Ен хыпарĕсене сармалли, культурăпа çут ĕçне сарса пыма тĕрлĕрен мелсемпе тата формăсемпе усă курмалла, çак тĕллевпе патшалăх тытакан учрежденисемпе тата наци культура пĕрлешĕвĕсемпе е центрĕсемпе туллин усă курмалла;

– республика тулашĕнчи чăваш шкулĕсем валли, чи малтан пуçламăш шкул валли тĕллевлĕн учительсем хатĕрлес ĕçе йĕркелемелле; çакна Чăваш Республикин аслă тата ятарлă вăтам шкулсенче туса пынипе пĕрлех Тутарстанри, Пушкăртстанри, Самарпа Ульяновск облаçĕсенчи педагогика училищисенчи чăваш уйрăмĕсене сарса, тĕреклетсе пымалла. Вĕсене, чи малтан Чĕмпĕрти чăваш шкулне, темиçе облаç валли кадрсем хатĕрлекен центрсем туса хумалла. Çак тĕллевпе Чăваш Республики Раççей Федерацийĕпе, Пушкăртстанпа тата ытти çĕрсемпе тунă ятарлă килĕшӳсемпе туллин усă курмалла;

– шкулти вĕренĕве ăнăçлă йĕркелес, хамăрăн йăхташсене, уйрăмах Чăвашрадиопа телевидени панине илеймен, театр-музейсене килсе курайман çынсене, Чăваш Ен хыпарĕсем çитерсе тăрас тĕллевпе вĕренӳре тата культурăпа çут ĕçĕнче усă курма юрăхлă курăмлăх хатĕрĕсем: фонохрестоматисемпе магнитофон хăйăвĕ çине çырнă уроксен (калавсен) ярăмĕсем, диафильмсем, видео- тата кинофильмсем, альбомсемпе ӳкерчĕк, карттă пуххисем, теттесем, компьютерпа ĕçлемелли программăсем т. ыт. те янтăласа васкавлă йĕркепе вырăна çитермелле. Çак тĕллевпе наукăпа педагогика центрĕсен, чăваш хаçат-журналĕн, чи малтан «Халăх шкулĕ» журналăн, радиопа телевиденин, кино ĕçĕн майĕсемпе туллинрех усă курмалла;

– Чăваш Республикин Вĕренӳпе ăслăлăх тата аслă шкул министерстви, аслă шкулсемпе методика учрежденийĕсем чăваш чĕлхине, чăваш халăхĕн историйĕпе культурине тĕрлĕ йышши шкулсенче тата пур тĕрлĕ, çавăн пекех шкул тулашĕнче вĕрентмелли программăсем, методика хатĕрĕсем янтăлама тивĕç, чăваш чĕлхи вĕрентекенсен ăсталăхне ӳстерес ĕçе вăйлатмалла, çак тĕллевпе учительсене Шупашкара чĕнсе пухнипе пĕрлех чăвашсем йышлă пурăнакан вырăнсенче те тăтăшах курссем, семинарсем ирттермелле;

– рынок хутшăнăвĕсем сарăлсах пынă май чăваш çыннисем е Чăваш Республикинче пурăнакансем хушшинче укçа, пурлăх нумай тытакан çынсем йышланса пынине шута илсе, хăйсен халăхĕ умĕнчи, тăван шкулпа культура умĕнчи тивĕçне ăнланнине, ăна пулăшма хатĕр пулнине асра тытса, вĕсене наци культурин пĕрлешĕвĕсен ĕçне йĕркелеме анлăрах явăçтармалла, уйрăм çынсем е харпăр предприятисем уйăрса паракан укçа-тенкĕпе шкул ĕçне вăйлатма усă курмалла.

## Чăваш наци кĕнекине кăларас ĕçе хӳтĕлесси çинчен резолюци

Чăваш Республикин территорийĕнче патшалăхăн кĕнеке кăлармалли системине сыхласа хăварас, çавăн пекех республика тулашĕнче йышлă пурăнакан чăвашсене тăван чĕлхепе çырнă литературăпа кирлĕ пек тивĕçтерес тĕллевпе:

**1.** Чăваш Республикин Аслă Совечĕпе Министрсен Советне Пĕтĕм чăвашсен кĕнеке кăлармалли тĕллевлĕ программине, Чăваш Республикин Пичетпе информаци патшалăх комитечĕ Чăваш Республикин Вĕренӳ, наукăпа аслă шкул министерствипе тата Чăваш Республикин Писательсен союзĕпе пĕрле палăртса хатĕрленĕ, 1993–1995 çулсенче пурнăçламалли программăна çирĕплетме ыйтас.

**2.** Чăвашла кăларнă кĕнекесене «Чăваш кĕнеки» пĕрлешӳ тата Чăвашпотребсоюз урлă сутас енĕпе йĕркеленнĕ системăна сыхласа хăварас тĕлĕшпе мерăсем йышăнас.

**3**. 1993 çул валли тата çывăх вăхăтри çулсем валли бюджет палăртса хатĕрленĕ чухне наци кĕнекине кăлармашкăн тата чăваш кĕнекисене сармашкăн дотаци пама кирлине çирĕплетсе хăвармалла.

## Чăваш кино искусствине чĕртсе аталантарасси çинчен резолюци

Ку чухнехи наци культуринче кино искусстви паллă вырăн йышăннине, çавăн пекех 1920–30-мĕш çулсенчи чăваш кинематографийĕн традицийĕсене шута илсе. Чăваш наци конгресĕ çапла шутлать: Чăваш Республикин Министрсен Совечĕ çывăх вăхăтра «Чăвашкинона» çĕнĕрен чĕртсе аталантарас тĕлĕшпе мĕн пур кирлĕ организацилле мерăсемпе ытти мерăсене пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ. Тĕпрен илсен:

**1.** Чăваш патшалăх телерадиокомпанийĕнче, Чăваш Республикин киновидеопĕрлешĕвĕнче, Чăваш Республикин творчество союзĕсенче ĕçлекенсен пултарулăх хăвачĕпе, техника майĕсемпе усă курса, «Чăвашкино» пĕрлешӳ туса хумалла.

**2.** Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн республикăра кăларакан кинопродукци валли тӳрремĕн укçа-тенкĕ уйăрасси, çавăн пекех Чăваш кино- тата видеофильмĕсене ӳкерес тĕлĕшпе пурнăçа кĕртме палăртакан программăсем валли ятарлă укçа-тенкĕ уйăрасси çинчен Раççей Федерацийĕн Финанс министерствине тата Раççей Федерацийĕн Кинематографи комитетне сĕнӳпе тухмалла.

**3.** Чăваш Респубикин Патшалăх пурлăхне тытса тăракан патшалăх комитечĕн Хусанти кинохроника студийĕн пирĕн республикăри корреспондент пункчĕ вырнаçнă çурта (Шупашкар, Павлов мичман урамĕ, 19) пĕтĕм оборудованийĕпе пĕрле «Чăвашкино» пĕрлешĕвĕн производствăпа техника базине туса хумашкăн республика харпăрлăхне куçарас ыйтăва татса памалла.

**4.** Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн «Чăвашкино» пĕрлешĕве ку чухнехи кино ӳкермелли хатĕрсемпе, кино техникипе тата видеооборудованипе тивĕçтермелли майсем шыраса тупмалла.

## Пĕтĕм чăвашсен хаçатне – Чăваш наци конгресĕн органне – туса хурасси çинчен резолюци

Чăвашсем пĕтĕм çĕр-шывĕпе сапаланса пурăннине, наци этнос пĕрлĕхĕ патне туртăннине, Раççей Федерацийĕн, Никама Пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлĕхĕн регионĕсенче тата ытти патшалăхсенче пурăнакан чăвашсем пĕтĕм наци ыйтăвĕсем çинчен çителĕксĕр пĕлсе тăнине шута илсе, çавăн пекех хăйĕн ĕç-хĕлне вăхăтра çутатса тăрас тĕллевпе ЧНК пĕтĕм чăвашсен хаçатне кăларни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине йышăнать тата çапла тумалла тесе шутлать:

**1.** Пĕтĕм чăвашсен хаçатне – Чăваш наци конгресĕн органне – туса хумалла тата Чăваш Республикин Аслă Совечĕпе Министрсен Советне унăн çумйĕркелӳçисем пулса тăма ыйтмалла.

**2.** Хаçата чăвашла, вырăсла, кирлĕ пулсан – акăлчанла тата ытти чĕлхесемпе кăларма палăртмалла. Пичет органĕн редакцийĕн вырăнĕ – Чăваш Республики, Шупашкар хули.

**3.** ЧР Аслă Совечĕпе Министрсен Советне ЧНК Кĕçĕн Канашĕпе пĕрле çавнашкал пĕрлехи орган вырăнне халĕ кашни эрнере тухса тăракан «Чăвашьен» хаçата палăртмалли майсене тишкерме ыйтас.

## Чăваш наци конгресĕ Чăваш Республикин, Раççей Федерацийĕнчи, НПППри тата тĕнчери халăхсене чĕнсе калани

Эпир, Чăваш наци конгресĕн делегачĕсем, тĕрлĕ халăхсен мĕн пур ырă кăмăллă çыннисем пирĕн форумăн – чăваш халăхĕн представителĕсен аслă пухăвĕн – тĕллевĕсемпе задачисене чĕре патне илсе ăнланасса шанса тăратпăр.

Чăваш халăхĕн чĕрĕлĕвне, аталанăвне, наци пĕрлĕхне çирĕплетнипе пĕрлех эпир Раççей Федерацийĕнчи, чикĕ леш енчи çывăх тата инçет патшалăхсенчи нацисемпе халăхсен суверенитетне йышăнатпăр, хисеплетпĕр. Эпир пур халăхсемпе те туслă пурăнасшăн, пирĕн хушăмăрти çыхăнусене анлăлатасшăн. Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Этем прависен хартийĕнче палăртнă принципсене тытса пырасса шантаратпăр, тоталитаризма, пĕр йышши экономика, идеологи е тĕн догмисене вăйпа йышăнтарнине, политикăпа наци ыйтăвĕсене пусах меслетсемпе татса панине сивлетпĕр.

Чăваш наци конгресĕ, тăван халăхăн хальхи лару-тăрăвне шута илсе тата хăй йышăннă документсенче унăн малашлăх çул-йĕрне палăртса татăклăн пĕлтерет: чăваш халăхĕн хăйĕн шăпине никамран ыйтмасăрах хăйĕн татса пама тулли право пур, вăл хăйĕн политика тытăмне ирĕклĕн палăртма, экономикăпа социаллă пурнăç тата культура аталанăвне ирĕклĕн йĕркелесе пыма тивĕç.

Тĕрлĕ çĕрте пурăнакан тăван-хурăнташсем! Эпир сире пĕтĕм

шухашăр-кăмăлăрпа, ĕçĕр-хĕлĕрпе наци чĕрĕлĕвĕшĕн пĕрлешме, май пур тарăн Чăваш Республикин суверенитетне тата демократиллĕ Чăваш патшалăхне çирĕплетме чĕнсе калатпăр.

## Обращение Чувашского национального конгресса к народам Чувашской Республики, Российской Федерации, СНГ и мировой общественности

Мы, делегаты Чувашского национального конгресса, обращаемся ко всем людям доброй воли с надеждой, что цели и задачи, провозглашенные нашим форумом, как высшим представительным собранием чувашской нации, будут близки и понятны каждому человеку независимо от его национальности.

Возрождение, развитие и национальная консолидация чувашского народа будут осуществляться нами с одновременным признанием и уважением суверенных прав всех наций и народов Российской Федерации, государств ближнего и дальнего зарубежья.

Мы желаем жить в дружеских отношениях и сотрудничать со всеми народами и, подтверждая свою приверженность принципам Хартии прав человека Организации Объединенных Наций, не принимаем тоталитаризма, имперской практики насаждения только одной экономической, идеологической или религиозной догмы, насильственных методов решения политических и национальных проблем.

Чувашский национальный конгресс, исходя из нынешнего состояния чувашской нации и наметив перспективу её будущего в принятых им документах, решительно подтверждает неотъемлемое право чувашского народа на самоопределение, как право свободного определения своего политического статуса и осуществление своего экономического, социального и культурного развития, и призывает всех соотечественников независимо от места проживания в своих мыслях, устремлениях и действиях объединиться вокруг идеи национального возрождения и развития, поддержать в меру своих сил и возможностей суверенитет Чувашской Республики, внести свой вклад в становление демократической чувашской государственности.

## ООНра тăман нацисемпе халăхсен пĕрлешĕвне, Пĕрлешу председательне Л. Мялль доктора,Пĕрлешĕвĕн генеральнăй секретарьне Майкл ван Валт ван Прааг доктора

Чăваш наци конгресĕ, чăваш нацийĕн халăх представителĕсенчен тăракан чи аслă пухăвĕ пулнă май, ООНра тăман нацисемпе халăхсен пĕрлешĕвне пирĕн халăха хăйĕн членне йышăнма ыйтать.

Çак Пĕрлешӳ йышĕнче чăваш халăхĕ, Раççей Федерацийĕнче пурăнакан тĕп халăхсен шутĕнче йышĕпе виççĕмĕш вырăнта тăракан халăх, хăйĕн никам та тытса илме пултарайман правине – хăйĕн шăпине хăй тĕллĕн палăртмалли правине – хӳтĕлемелли, Чăваш Республикин суверенитетне йышăнмалли майсем тата хăйĕн политикăри тата наци культура аталанăвĕнчи тĕллевĕсем çинчен тĕнчери организацисене, тĕнчери общественноçа пĕлтерсе тăмалли çул-йĕрсенчен пĕрне курать.

Хăй енчен Чăваш наци конгресĕ ООНра тăман нацисемпе халăхсен пĕрлешĕвĕн тытăмĕсем урлă ытти нацисемпе халăхсем çнчен пĕлсе тăма, тĕнчере килĕштерсе ĕçлес енĕпе опыт пухма тата хăйсен культура хăйсене евĕрлĕхне çирĕплетсе пынă май, тĕп гуманитари тата экономика прависене пурнăçа кĕртсе пырса, никама пăхăнманлăх çĕнсе илсе, нацисемпе халăхсен пĕрлехи принциплă позицийĕсене палăртса хатĕрлес ĕçе хутшăнма шутлать.

Чăваш наци конгресĕ ООНра тăман нацисемпе халăхсен пĕрлешĕвĕн 1991 çулхи нарăсăн 11-мĕшĕсенче Гаагăра йышăннă Килĕшĕвĕпе пĕр шухăшлă пулни çинчен тата çак Пĕрлешӳ йышĕнче хăйсен тĕп правине – халăх шăпине хăйсем тĕллĕн палăртмалли правине – демократилле тата вăйпа усă курман çул-йĕрпе çирĕплетме тăрăшакан халăхсемпе пуринпе те килĕштерсе ĕçлеме ăнтăлни çинчен официаллă пĕлтерет.

## «Ирĕклĕх» радиона чĕнсе калани

Чăваш наци конгресĕ, Раççей Федерацийĕнчи тĕп халăхсен шутĕнче йышĕпе виççĕмĕш вырăнта тăракан, Сахалинтан пуçласа Калининград облаçĕ таран, çавăн пекех НПППри мĕн пур çĕр-шывсенче тата никама пăхăнман патшалăхсенче пурăнакан 1 миллион ытла çынран тăракан чăваш халăхĕн чи аслă органĕ пулса тăнă май, çакна çирĕплетсе парать: чăваш халăхĕн тĕп массисем телевиденипе радиора тăван чĕлхепе хатĕрленĕ передачăсене пăхма тата итлеме пултараймаççĕ. Çавна май Чăваш наци конгресĕ «Ирĕклĕх» радиора чăваш редакцине туса хумалли майсене тишкерме е «Раççей паян», «Импери хыççăн» пек программăсенче Чăваш Республикин политика тĕлĕшĕнчи лару-тăру çинчен, Уралпа Атăл тăрăхĕнчи чăваш наци-демократи юхăмĕ аталанса пыни çинчен пĕлтерсе тăрассине шута илме сĕнет.

ЧНК «Ирĕклĕх» радиопа çыхăну тытма хатĕр. Чăвашсен хушшинче ăна тĕрĕс хыпар парса тăракан, хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне çĕнсе илме тăрăшакан халăхсен позицийĕсене тĕрĕс тишкерекен радио пек пĕлеççĕ.

*«Хыпар», 1992, юпа, 16, 207 №.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСНЕ ЯНĂ САЛАМСЕМ

Чăваш халăхĕн историйĕнче пĕрремĕш хут унăн республикăри, ытти регионĕсенчи, чикĕ леш енчи представителĕсем пĕрлешмелли тата нацие аталантармалли татăклă çул-йĕрсене палăртма пĕрле пуçтарăнчĕç.

Пирĕн çĕр-шывра чăваш халăхĕн обществăпа политика тăнăçлăхне упрас, пурнăçăн пĕтĕм енĕсене çĕнетсе улăштарас ĕçри тӳпине пысăка хурса хаклаççĕ. Федераци Договорне ыттисемпе пĕр тан хутшăннă май Чăваш Республики хăйĕн политика, социаллă сферăпа экономика тата ăс-пурлăх аталанăвĕнче пысăк утăмсем тăвать.

Наци культурипе чĕлхине пур шайра та аталантарни, историллĕ йăласене çĕнĕрен чĕртни – ырă тĕллев. Çак йывăр та явапла ĕçре ăнăçу тума тăнăçлăх тата мир, пирĕн пĕрлехи çĕр-шывăмăрăн – Раççейĕн пĕрлĕхлĕхĕн тата территори тĕлĕшĕнчен пайланманлăхĕн условийĕсенче çеç май пуррине çирĕп ĕненетĕп.

Сирĕн форум çак чи кирлĕ ыйтусене татса парас ĕçе хăйĕн тӳпине хывасса, Раççей халăхĕсен пĕрлĕхлĕ, нумай нациллĕ çемйинче чăваш халăхне çĕнĕрен чĕртме, вĕсен хушшинчи нумай ĕмĕр хушши пыракан туслăха çирĕплетме пулăшасса шанатăп.

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ
Б. ЕЛЬЦИН.

***

Раççей Федерацийĕн Аслă Совечĕ ячĕпе Чăваш наци конгресне хутшăнакансене тата унăн хăнасене саламлатăп. Ăнăçлă ĕçлемешкĕн ырă суннипе пĕрле Конгресс нацие пĕрлештерме, çĕнелнĕ демократиллĕ Раççее çирĕплетес ĕçе хăйĕн пысăк тӳпине хывакан мухтавлă чăваш халăхĕн вăйĕсемпе таланчĕсене республикăри чи кирлĕ ыйтусене татса парас тĕллевпе чăмăртама пулăшасса шанатăп.

Раççей Федерацийĕн Аслă Совечĕн
Председателĕ Р.И. ХАСБУЛАТОВ.

## ЧР АСЛĂ СОВЕЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛЬНЕ, ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСНЕ

Хаклă туссем!

Чăваш халăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç – наци конгресĕ ирттернĕ ятпа саламлатăп. Пĕр аттелĕх çыннисен съезчĕ чăваш халăхĕн пĕрлĕхне, наци хăй ăнлавĕ ӳснине, тĕнчери хуть хăш кĕтесре те пурăнакан чăваш диаспорипе çыхăнăва, Раççей Федерацийĕнчи пур халăхсемпе те кӳршĕллĕ хутшăнусене çирĕплетнине пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса парасса шанатăп.

Халăх чунĕн чĕрĕлĕвĕ еннелле тунă кашни утăм – Раççей патшалăхĕн хăватне çирĕплетме тунă утăм. Истори темиçе хут та кăтартса панă ĕнтĕ – наци чысне, культурине, хăй евĕрлĕхне хĕсекен политика тытсанах çав çĕр-шыва аркану тата чухăнлăх кĕтнĕ. Кăна эпир хамăр та куртăмăр ĕнтĕ.

Пурнăçа лайăхлатас, демократиллĕ общество туса хурас пĕрлехи тĕллевсем Раççей халăхĕсене таччăн пĕтĕçме, мирлĕ те килĕшÿллĕ пурăнма, пĕр-пĕрне пулăшма хистеççĕ. Нацисен пĕрлехи чĕрĕлĕвĕн тĕп саманчĕсене Федераци килĕшĕвĕнче палăртса хăварнă, вăл хамăр хальччен çухатса пĕтереймен культура, чун тата пурлăх хаклăхĕсене малашне упраса хăварас çул-йĕрсем пирки шухăшлассине пуçарса ячĕ.

Кашни халăхăн съезчĕ шăпах ĕнтĕ наци культурине, вĕрентĕвне тата чĕлхине чĕртсе тăратас тата аталантарас тĕллевсене тивĕçтерет. Ку тĕлĕшпе эпĕ хам енчен мĕн тума пултарнине пурнăçлама яланах хатĕр.

Тухăçлă ĕç сунатăп. Конгресс пĕтĕмлетĕвĕсем пирĕн нумай нациллĕ çĕр çинчи ытти халăхсемпе туслă тата ĕçлĕ çыхăнусене çирĕплетмелли çирĕп никĕс пулса тăрасса шанатăп.

Р. АБДУЛАТИПОВ, Раççей Федерацийĕн
Аслă Совечĕн Национальноçсен Совечĕн председателĕ.

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АСЛĂ СОВЕЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛЬНЕ Э. КУБАРЕВ ГОСПОДИНА

Чи малтанах хам ятпа тата халăхăм ячĕпе Сирĕн пĕрремĕш наци конгресне чĕннĕ ятпа тав тума ирĕк парăр. Чăваш тĕрĕкĕсемпе азербайджан тĕрĕкĕсем хушши географи тĕлĕшĕнчен инçетре пулсан та сирĕн татса памалли ыйтăвсем пире çывăх тата паллă. Историри пирĕн шăпа çапла килсе тухнă: пĕр тапхăрта эпир — мăсăльман, чăваш тĕрĕксем — христиан тĕнне йышăннă пулин те, пире наци тымарĕсем тата юмăç кĕлли питĕ çывăхлатать. Тепĕр енчен, эпир сирĕнпе пĕр вăхăтрах 70 çул ытла коммунистла тоталитаризм режимне тÿссе пурăнтăмăр. Пире пĕрлехи ырату çеç мар, пин-пин çул çыхăнтарса тăнă тымарсен савăнăçĕ те пĕрлештерет.

Пĕлетĕр ĕнтĕ, Азербайджан XX ĕмĕрте çеç иккĕмĕш хут суверенитет çĕнсе илчĕ. Пĕрремĕш суверенитет (историрен çакна пĕлетĕр) — 1918 çулта демократиллĕ Азербайджан республикине туса хунă. Питĕ шел, унăн историйĕ 23 уйăха çеç пынă. 1920 çулта Хĕрлĕ Çар большевиксем ертсе пынипе Азербайджан Советлă Социализмла Республикине туса хунă. Халĕ вара, Совет Союзне çĕнетсе йĕркеленĕ чухне, Азербайджан халăхĕ Ирĕклĕх ялавне малтисенчен пĕри пулса çĕклерĕ, малтисенчен пĕри пулса хăйĕн суверенитечĕ пирки пĕлтерчĕ.

Ăнланмалла ĕнтĕ, унччен Союзри ытти членсем пекех, Азербайджан та паян социаллă йывăр ыйтусемпе куçа-куçăн тăчĕ. Çав вăхăтрах кÿршĕсем никама та кирлĕ мар вăрçă пуçарса ячĕç — шалти йывăр ыйтусене татса панипе пĕрлех пирĕн хамăрăн Тăван çĕр-шыва та хÿтĕлеме тивет. Анчах та йывăрлăхсем пире хăратмаççĕ, эпир малаша шанчăклă пăхатпăр, паянхи куна 140 ытла çĕр-шыв Азербайджан суверенитетне йышăннишĕн савăнатпăр — чылайăшĕпе дипломати, социаллă, экономика çыхăнăвĕсем йĕркелерĕмĕр, Бакура тата ытти ют çĕр-шывсенче посольствăсемпе консульствăсем уçăлаççĕ. Çывăх вăхăтрах эпир коммунистсен еткерлĕхĕнчен юлнă йывăр ыйтусене татса парасса шанатпăр.

Эпир сирĕнпе пĕрле савăнатпăр, чăваша хăйсене те çывăх вăхăтрах Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн (ООН) членĕ пулса тăма тата тулли ирĕклĕх çĕнсе илме сунатпăр. Пурсăмăр та пĕрле Чăваш тата Азербайджан халăхĕсен чаплă ирĕклĕхĕпе савăнмалли тата ыр курмалли кун инçе марри пирки иккĕленместĕп.

Абульфаз ЭЛЬЧИБЕЙ,
Азербайджан Президенчĕ. *Баку, 1992 çулхи юпан 8-мĕшĕ.*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АСЛĂ СОВЕЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛЬНЕ Э. КУБАРЕВ ГОСПОДИНА

Наци конгресне йыхравланăшăн тав тăватăп. Чăваш наци чĕрĕлĕвĕн çулĕ çинчи çĕнĕ утăм пулса тăракан сирĕн конгреса саламлатăп.

Шел те, Конгресс ĕçне хутшăнаймастăп.

Чун-чĕререн

Витаутас ЛАНДСБЕРГИС,
Литва Республикин Аслă Совечĕн Председателĕ.
*Вильнюс, 1992 çулхи юпан 8-мĕшĕ.*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АСЛА СОВЕЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛЬНЕ Э. КУБАРЕВ ГОСПОДИНА

Хисеплĕ председатель господин!
Чăваш наци конгресне пухасси пирки кăсăкланса паллашрăм. Ăна ирттерни сирĕн халăхăра чĕрĕлсе тăма пулăшасси сăмахсăрах паллă.

Чăвашсен ĕмĕчĕ Молдова халăхĕн ĕмĕчĕсене çывăх. Пирĕн наци политики Молдовăра пурăнакан пур этнос ушкăнĕсене те, çав шутра чăваш нациллĕ 1200 çынна та, пĕр тан правапа тивĕçтересси пулса тăрать. Чăваш Республикине ертсе пыракансем шăпана кура сирĕн çĕр çине пырса тухнă пирĕн ентешсен наци ыйтăвĕсене тивĕçтерессине те тĕрĕс ăнланасса шанатăп.
Питĕ шел, çак кунсенчи хĕрÿ ĕçсене пула чăваш халăхĕн форумне хутшăнаймастăп. Май пур чухне унта хутшăнакансене тухăçлă ĕçлеме, туслă чăваш халăхне тăнăçлăх тата чечекленÿ сунатăп.

Мирча СНЕГУР,
Молдова Президенчĕ. *Кишинев,1992 çулхи юпа, 7.*

***

Мари Эл республикинчи халăхсен представителĕсен Йошкар-Олара иртекен пухăвĕ Чăваш наци конгресне хутшăнакансене чун-чĕререн саламлать тата Раççей халăхĕсен нумай нациллĕ çемйинче чăваш халăхĕн наци ыйтăвĕсене туллирех тивĕçтерессишĕн тухăçлă ĕçлеме сунать.

Мари Эл Республикинчи халăхсен представителĕсен пухăвне хутшăнакансем.
Йошкар-Ола, *1992 çулхи юпан 9-мĕшĕ.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСНЕ

Делегатсемпе унта хутшăнакансене чун-чĕререн саламлатпăр, тăванла чăваш халăхне ырлăхпа чечекленÿ сунатпăр.

«Марий Ушем» правленийĕ.
Йошкар-Ола, *1992 çулхи юпан 8-мĕшĕ.*

***

Хаклă туссем! Чăваш наци конгресне ирттернĕ май манран чун-чĕре саламне тата ырă сунăмсене йышăнсамăр.

Унăн йышăнăвĕсем тата хыççăн пулас ĕçсем чăваш халăхне хăйĕн экономикипе культурине сыхласа хăварма тата малалла аталантарма пулăшасса шанатăп. Ку вăл сирĕншĕн çеç мар, пĕтĕм Раççейшĕн, хамăрăн Атăл тăрăхĕнчи халăхсемшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Хăш наци çыннине пăхмасăр — кашни çын ырлăхĕ унăн таврашĕнчи çынсемпе халăхсен ырлăхĕпе телейĕнчен килет. Ку вăл Ульяновск тăрăхĕнче пурăнакансемшĕн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кунта чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕсем Иван Яковлевич Яковлев тата Константин Васильевич Иванов пурăннă тата ĕçленĕ. Паян пирĕн облаçра 120 пин чăваш пурăнать тата ĕçлет. Вĕсем чăваш халăхĕн телейĕпе чечекленĕвĕ ытти халăхсемпе, чи малтанах вырăс халăхĕпе туслă пурăннинче тесе палăртнă. И.Я. Яковлев халалне асра тытса пурăннине хаваспах палăртатăп. Облаç администрацийĕ чăваш культурине чĕртес тата аталантарас, пирĕн патăрти палăксене сыхласа хăварас тата управлă усă курас тĕлĕшпе малашне те пур енчен те пулăшса пырассине палăртатăп.

Ю. ГОРЯЧЕВ,
Ульяновск облаçĕн администрацийĕн пуçлăхĕ.
*Ульяновск,1992 çулхи юпан 7-мĕшĕ.*

***

Халăх депутачĕсен Ульяновск облаç Совечĕ Чăваш наци конгресне хутшăнакансене хĕрÿллĕн те чĕререн саламлать.

Ульяновск тăрăхĕнчи çынсем чăвашсен сумлă форумĕ çак кăткăс вăхăтра нумай нациллĕ Раççейри наци-демократи вăйĕсене пĕтĕçтерес, халăхсен хушшинчи истори, социаллă пурнăç тата уйрăм çынсен çыхăнăвĕсене çирĕплетес тĕллеве тивĕçтерессе шанаççĕ.

Конгреса хутшăнакан хисеплĕ çынсем! Сире чăваш халăхĕн социаллă пурнăçри тата культурăри тĕллевĕсене пурнăçлас ĕçре ăнăçусем сунатпăр.

Р. БУХАРЕВ,
халăх депутачĕсен облаç Совечĕн председателĕн пĕрремĕш заместителĕ.

***

Чăваш наци конгресĕн хисеплĕ делегачĕсемпе хăнисем!

Нумай нациллĕ суверенлă Саха (Якут) Республикин Аслă Совечĕ, Президенчĕ тата Правительстви ячĕпе наци конгресĕ ĕçлеме пуçланă ятпа хĕрӳллĕн тата чĕререн саламлатпăр, çав форумăн тĕллевĕсемпе пĕр шухăшлă пулнине пĕлтеретпĕр. Чăваш халăхĕн наци чĕрĕлĕвĕн çул-йĕрĕсене палăртас, чăвашсем тачă пурăнакан регионсемпе çыхăну йĕркелес ыйтăва татса парас, çапла вара хăвăрăн халăхăрăн историне, йăлисене, культурине, чĕлхине, наци чысне тарăннăн хисеплес тата ун шăпишĕн яваплăх илес тĕлĕшпе эсир тăрăшса ĕçленине пысăка хурса хаклатпăр.

Саха (Якут) Республики паян нумай нациллĕ, экономикăра тата социаллă аталанура хăвăрт аталанса мала тухма май паракан çут çанталăк пурлăхĕнчен пуян тата экономика тĕлĕшĕнчен хăватлă патшалăх. Ытти халăхсемпе пĕрле «Олонхо» çĕр-шывĕнче туслă Чăваш Ен çыннисем те ĕçлесе пурăнаççĕ, республикăн тата Раççей Федерацийĕн экономикăри тата культурăри чĕрĕлĕвне хайсен тӳпине хываççĕ.

Юлашки вунă çуллăхсенче Якути сăнĕ экономикăра палламалла мар улшăнчĕ, социаллă аталанура, хаяр çурçĕр тăрăхĕнче пурăнакан халăхсен чун тата культура аталанăвĕнче тĕлĕнмелле улшăнусем пулса иртрĕç.

Республикăра пур наци çыннисем те пĕр тан правалла тата ирĕклĕхлĕ, çакна 1992 çулхи ака уйăхĕн 27-мĕшĕсенче йышăннă суверенлă Саха (Якут) Республикин çĕнĕ Конституцийĕ (Тĕп саккунĕ) тивĕçтерет. Эпир этеме аталантарассине, якут тата республикăри ытти халăхсен хăй евĕрлĕхне чĕртсе тăратассине чи малти вырăна лартатпăр. 100 ытла халăх çыннисем пурăнакан республикăра граждансен хушшинче килĕшӳ, тăнăçлăх тăвасси тĕп тĕллев. Çак ĕçре эпир Якути 360 çул Раççей пайĕ пулнине шута илетпĕр. Çак политикăна пула республикăра нацисен хутшăнăвĕнче лăпкă, çирĕп лару-тăру.

Наци конгресĕн делегачĕсене эпир чăваш халăхĕн суверенлă прависене, патшалăх статусне хисепленине çирĕплетсе пĕлтеретпĕр, хамăр хутшăнусене Федераци килĕшĕвĕ çине таянса йĕркелеме ĕмĕтленетпĕр. Çак Конгресра Федераци килĕшĕвне пурнăçламалли механизм тата унăн РФ Конституцийĕнчи ролĕпе вырăнĕ тивĕçлĕ вырăн йышăнасса, пирĕнпе сирĕншĕн паллă позицисем Конгресс йышăнакан документсенче палăрса юласса ĕненетпĕр.

Пуриншĕн те йывăр вăхăтра ял хуçалăхĕнче те, промышленноçра та çитĕнӳсем тăвакан Чăваш Республикин ĕçчен халăхне хамăр юратни çинчен пĕлтеретпĕр. Якутире промышленноç тракторĕсен гиганчĕн, агрегат завочĕн, МНТК филиалĕн, «Энергозапчасть» заводăн тата ыттисен продукцине лайăх пĕлеççĕ. Шупашкар ГЭСĕ хăйĕн калăпăшĕпе тата хăвачĕпе тĕлĕнтерет. Чăваш хăмлин мухтавĕ пĕтĕм тĕнчене сарăлчĕ. Хăмла курланки тĕнче рынокĕнче Казанлык розин çеçкипе пĕр хак тăнине те пĕлетпĕр эпир. Республикăн ĕçчен халăхĕ экономикăра, социаллă пурнăç тата культура сферинче тунă çитĕнӳсем малалла аталанасса тата хăвăртланасса шанатпăр, çакна наци конгресне пухни те ĕнентерет.

Чăваш Республики Раççей Федерацийĕнче суверенлă патшалăх пулса политикăри тата экономикăри хăй тĕллĕнлĕх патне саккунлă ăнтăлнине ырлатпăр.

Чăваш çĕрĕ çинче ĕмĕрлĕх тăнăç пурнăç пултăр, халăхсен туслăхĕ çирĕплентĕр. Ырлăх тата чечекленӳ сунатпăр.

М. НИКОЛАЕВ, Саха (Якут) Республикин Президенчĕ.
К. ИВАНОВ, Саха (Якут) Республикин Аслă Совечĕн Председателĕ.
*Якутск,1992 çулхи юпан 7-мĕшĕ.*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АСЛĂ СОВЕЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛЬНЕ Э. КУБАРЕВА

Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕсенче Берлинра Чăваш культурин кунĕ пулать. Миттов тата халăх ӳнерĕн выставки уçăлать. Чăваш наци конгресĕ ĕçпе ăнăçлă пулинччĕ.

Геннадий АЙХИ, чăваш поэчĕ, Франци Академийĕн премийĕн лауреачĕ.
*Берлин,1992 çулхи юпан 7-мĕшĕ.*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АСЛĂ СОВЕЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛЬНЕ Э. КУБАРЕВА

Шел, конгреса çитейместĕп. Сирĕн конгреса чун-чĕререн саламлатăп.

Макс МАНГОЛЬД, профессор.
*Германи, Саарбрюкен, 1992 çулхи юпан 9-мĕшĕ.*

***

Хаклă юлташсем!

Пушкăртстан Аслă Совечĕпе Правительстви Чăваш наци конгресне хутшăнакансене тăванла саламлать, ăнăçлă ĕç сунать!

Эсир — пирĕн тăвансем, çак туслăхран çирĕпреххи çук. Темиçе çĕр çул ĕнтĕ эпир алла-аллăн утатпăр, пире туслăхпа юрату çыхăнтарса тăрать, пурсăмăрăн савăнăçăмăра та вăл çулран çул тĕреклетет. Эпир чăваш халăхне çутă пуласлăх кĕтнине ĕненетпĕр.

Халĕ пирĕн халăхсем республикăмăрсен тулли суверенитечĕшĕн кĕрешеççĕ. Сирĕн те, пирĕн те Конституци йышăнмалла, никама пăхăнманлăх идейине ĕçсемпе çирĕплетмелле, çĕнĕ экономикăна май çитнĕ тарăн сахалрах сухатусемпе куçмалла. Çав вăхăтрах Чăваш Енре те, Пушкăртстанра та халăхсем хушшинче çураçулăх пулни пире савăнтарать.

Пирĕн республикăри чăваш общественноçĕ ултă çул ĕнтĕ хăй халăхне çута кăларас, культурине чĕртсе тăратас тата аталантарас тĕлĕшпе тухăçлă ĕçленине савăнса палăртатпăр. Вĕсем Ĕпхӳри, кайран республикăри наци культурисен «Туслăх» центрне йĕркелес, республикăсем хушшинче туслăн çыхăнса ĕçлесси çинчен договор тăвас тата республикăра 20-мĕш çулсенче тухса тăнă чăвашла хаçата чĕртсе тăратас тĕлĕшпе пуçаруçăсем йышĕнче пулчĕç. Икĕ çул ĕнтĕ «Урал сасси» хаçат республика Аслă Совечĕпе Министрсен Совечĕн органĕ пек тухса тăрать.

Çав вăхăтрах эпир Пушкăртстанра чăваш шкулĕсене чĕртсе тăратас, вĕсенче ĕçлеме учительсем тата культура ĕçченĕсем хатĕрлес ыйтусемпе питĕ нумай ĕçлемеллине ăнланатпăр.

Пирĕн халăхсен туслăхĕ çак куçăм тапхăрĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерессе шанатпăр.

Сире халăхсен туслăхĕн ячĕшĕн çирĕп сывлăх, телей тата чечекленӳ сунатпăр.

Пушкăртстан Республикин Аслă Совечĕ.
Пушкăртстан Республикин Министрсен Совечĕ.

***

Тутарстан Республикин Аслă Совечĕ, республикăри нумай нациллĕ халăх Аслă Конгреса хĕрӳллĕн те чĕререн саламлаççĕ, чăваш халăхĕ хăйĕн чунĕпе чĕрĕлсе тăрассишĕн, ытти тăванла халăхсемпе туслă пурăнса çыхăну тытассишĕн ĕçре ăнăçу сунаççĕ.

Таса чун хавалĕпе хускалса, хăвăрăн наци чĕлхипе культурин, йăлисен чĕрĕлĕвĕн шăпишĕн пăшăрханса, нацисем хушшинчи тăнăçлăха тата килĕшĕве çирĕплетесси çинчен шутласа пухăнтăр эсир сумлă форума.

Сирĕн Конгресс кăткăс вăхăтра пухăнчĕ. Обществăра пулса иртекен улшăнусем наци хутшăнăвĕсенчи нумай вăхăт хушши асăрхаман е шалта амалантарнă кăтартуллă декларацисем йышăннипех тата хавхалануллă сăмах çаптарнипех çырлахнă. Вĕсенчен чылайăшĕн халĕ наци хăй ăнланăвĕ ӳсет, наци пахалăхĕсене хӳтĕлекен патриотизм кашни халăхăн пурнăçĕнчи çут çанталăкпа çураçуллă та саккунлă пуçламăшĕ пулса тăрать. Çакна чăваш халăхĕн конгресĕ те ĕнентерӳллĕ çирĕплетет.

Пирĕн наци республикисен гражданĕсене — чăвашпа тутара — пĕрлештерекенни нумай — авалран килекен ырă кӳршĕлĕх. Пăлхар историйĕн еткерлĕхĕ пĕри пулни, наци культурисем çывăх тăни. Пĕрле çыхăнса ĕçлени, туслăх, пĕр-пĕрне пулăшасси ĕçе тата пурнăçа юратнипе палăрса тăракан пирĕн халăхсен юнĕнче яланах пулнă. Нумай ĕмĕр хушши юнашар пурăннă май пирĕн халăхсен наци хутшăнăвĕсем тачă формăллă аталаннă, çакă пĕр-пĕрин чĕлхипе культурине пуянлатнă.

Чăвашсен нумай поэчĕ, писателĕ, ученăйĕ, артисчĕ, общество деятелĕ Хусанта пĕлӳ илнĕ тата хăйсен пултарулăхри тата обществăри ĕçне

ăнăçлă пуçланă. Хусан университетĕнче чăваш халăхне çутта кăларакан аслă Иван Яковлевич Яковлев вĕреннĕ. Чăвашсен профессиллĕ пĕрремĕш театрĕ Хусанта уçăлнă. Унтах чăвашла пĕрремĕш хаçатсем тухнă. Тутарстанрах чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çуралса ÿснĕ, пултарулăхри малтанхи утăмсене тунă.

Никама пăхăнман патшалăхсен пĕрлĕхĕнчи уйрăм вĕри республикăсенче ĕç-пуççем халăхсем хушшинчи туслăха, тĕрлĕ енлĕ çыхăнусене пĕтĕмĕшле сăмахлă декларацисемпе çеç аталантарма май çукки çинчен калаççĕ. Экономикăри пĕр-пĕриншĕн кирлĕ те усăллă тата кунта пурăнакан халăхсен наци культурин ыйтăвĕсене те тивĕçтерекен никĕс çинче тăвакан татăклă ĕçсем кирлĕ. Икĕ республика хушшинчи туслăхпа килĕштерсе ĕçлесси çинчен алă пусса çирĕплетмелли договор Чăваш Республикипе Тутарстан Республики хушшинчи тăванла çыхăнусене аталантармалли çирĕп никĕс пулĕ.

Политикăра, социаллă пурнăçпа экономика тата культура сферисенче пĕр-пĕриншĕн усăллă та килĕштерсе ĕçлессишĕн пĕрлĕхлĕ интерессем пурри пирĕн халăхсен авалран килекен туслăхне çĕнĕ хĕлхем тата конкретлăх кÿрĕ тесе шанса тăма пур сăлтавсем те çителĕклĕ. Тутарстан Республикинче пурăнакан чăваш тата Чăваш Республикинче пурăнакан тутар диаспорисен наци культура интересĕсене тивĕçтерес енĕпе уйрăмах тимлĕ ĕçлетпĕр. Халăха вĕрентес ĕçе, культурăна, илемлĕ литература, хаçат-журнал салатас, тăван чĕлхепе радио тата телепрограммăсем йĕркелессине те пырса тивет çакă. Паян Тутарстан Республикинчи 80 шкулта чăваш ачисем тăван чĕлхепе вĕренеççĕ, массăллă 136 библиотека, 300 культура керменĕпе клуб ĕçлет. Чăвашсем пĕр вырăнта йышлă пурăнакан районсенче наци культура центрĕсем ĕçлеççĕ, чăвашла хаçатсем кăлараççĕ, радио передачисем эфира тухаççĕ.

Анчах та çакă наци культура ыйтăвĕсене пĕтĕмпех тивĕçтернине пĕлтермест-ха, çакна тÿрех йышăнмалла. Нацисем хушшинчи хутшăнусенче те татса памалли ыйту нумай. Шăпах вĕсене сÿтсе явас тата татса памалли çул-йĕрсене тупса палăртас тĕллевпе пухăнчĕ те ĕнтĕ Тутарстан Республикин историйĕнчи Тутарстан халăхĕсен пĕрремĕш съезчĕ. Унта пулса иртнĕ тĕплĕ калаçу, йышăннă документсем интернацилĕхпе туслăх законĕсене ăша хывнă пирĕн халăх ăсне уççăн çирĕплетеççĕ.

Чăваш наци конгресĕ тухăçлă та конструктивлă ĕçлени ырă ĕçсен пуçламăшĕ пулса тăрасса тата чăваш халăхĕпе Чăваш Республикин чун-хавал аталанăвĕнче çĕнĕ, çутă страницăсем уçасса шанса тăратпăр.

Тутарстан Республикин Аслă Совечĕ. *«Хыпар», 1992, юпа, 16, 207 №.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН АСЛĂ ПУХĂВĔН МĂН КАНАШĔ

1. **Айдак Аркадий Павлович** – Чăваш Республикин Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» колхоз председателĕ.
2. **Алексеев Андрей Алексеевич** – «Тăван Атăл» журналăн публицистика пайĕн редакторĕ.
3. **Андреев Василий Алексеевич** – Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ.
4. **Биктимиров Кирилл Алексеевич** – Чăваш Республикин финанс министрĕн заместителĕ.
5. **Борисов Геннадий Арсентьевич** – Чăваш Республикин Елчĕк районĕнчи Патреккел ялĕн халăх хорĕн ертÿçи.
6. **Бурундуков Авраам Федорович** – Чăваш Республикин композиторсен ассоциацийĕн членĕ.
7. **Васильев Юрий Васильевич** – Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн ертÿçи.
8. **Викторов Герман Викторович** – Эстонири чăвашсен культура обществпн пуçлăхĕ.
9. **Волков Борис Иванович** – Чăваш Республикин Канаш хулин администрацийĕн пай пуçлăхĕ.
10. **Волков Геннадий Никандрович** – Раççей Федерацийĕн Педагогика наукисен академийĕн чăн членĕ.
11. **Воронцова Галина Михайловна** – Чăваш Республикин Наукăсен академийĕн чăн членĕ.
12. **Герасимов Илья Осипович** – Чăваш Республикин культура министрĕн заместителĕ.
13. **Григорьев (Енĕш) Виталий Григорьевич** – çыравçă.
14. **Гладышев Владимир Анатольевич** – Чăвашпотребсоюз председателĕ, Чăваш Республикин халăх депутачĕ.
15. **Давыдов-Анатри Василий Иванович** – Чăваш халăх поэчĕ.
Положения документов ЧНК непосредственно влияют на судьбу республики, отдельных её граждан. Особенно наглядно это иллюстрирует резолюция «О принципах Закона ЧР «О гражданстве». Гражданство рассматривается как «один из основных и фундаментальных институтов подлинно суверенного государства». В основном (?) будущее гражданство ЧР предусматривается приобретать по рождению, в результате признания и приема в гражданство. «В случае приобретения гражданства по рождению особого регулирования должен требовать вопрос соотношения гражданства детей и родителей». Прием в гражданство (для граждан РФ, иностранных граждан) возможен только «с учетом соблюдения определенных условий (?!)». Необходимо и письменное ходатайство для приема в гражданство. Почему-то упустили авторы вопрос: на каком же языке должно быть ходатайство?

Предусмотрены особые случаи приема в гражданство ЧР для лиц, имеющих особые заслуги перед республикой: видных деятелей культуры, искусства, выдающихся спортсменов, политических деятелей. И себя, как говорится, не забыли. Решение о приеме может быть и отменено. «Высшим государственным органом, уполномоченным решать вопрос гражданства ЧР, должен явиться... Президент республики». Вот так-то. Вновь граждан пытаются превратить в винтики государственной машины или даже одного человека — вождя.

Как случайно выяснилось, русский и чувашский тексты резолюции не были идентичны. Так, в русском тексте, который в основном и был у делегатов, не содержалось положения о необходимости срока проживания в республике и знании чувашского языка на бытовом уровне. Эти различия А. Хузангай объяснил очень просто: над текстами работали разные люди в разное время. Но поскольку основной язык ЧНК — чувашский, то и приниматься будет чувашский текст.

Представляется все же, что это не просто накладка, а явное проявление давно наметившейся тенденции обособления лидеров «национально-освободительного движения» от «русскоязычной» прессы, утаивания своих целей, намерений, двуличное отношение к «русскоязычным». Воздвигается своего рода информационная берлинская стена между народами республики.

Когда один из приехавших делегатов выразил сожаление, что из-за предложенных формулировок ему не удастся стать гражданином ЧР и жить в Батыреве, А. Хузангай ответил: «Не волнуйтесь! Даже если Вы не получите гражданство, Вас все равно похоронят на кладбище Батырево». Как говорится в известном анекдоте, даже в самые трудные минуты работы конгресса ему не изменяло чувство «юмора».

Понимали ли делегаты, что голосуют за недостойную современного цивилизованного общества концепцию о гражданстве? А возможно, это допотопное убожество будет вынесено на Верховный Совет, там всерьез обсуждаться и может стать законом. Ведь немало депутатов за него уже проголосовало на конгрессе.

Немаловажное представление о царящей атмосфере дают и представленные материалы, выступления отдельных делегатов на конгрессе и в ходе подготовки к нему. «Россия возникла как империя, захватившая территории других народов и государств. Для коренных народов России крайне важно знать реальную историю их насильного покорения» — с первых же строк первого номера убеждала газета ЧАП «Аталану», отрицающая и «легитимность границ России». В помещенной в этом же номере длинной и путаной статье В. Егорова, запуганного собственными измышлениями, говорится среди прочей несуразицы и о «попытках обеления преступлений империи».

«Россия, ты чувствуешь свою вину, свой непомерно большой грех?.. Везде и всюду ты, Россия, незваный гость!.. Такая коварная, такая нечестно-подлая...». Это уже из творения В. Тургая, опубликованного в «АВАН-И». «Мы хотим, чтобы нас поняли», — говорил А. Хузангай. Ну как тут не понять. Неприкрытая неприязнь к России, невозможная без неприязни к русским (незваным гостям?), отнюдь не означает неприятие к империям вообще. В № 1 «Аталану» содержится реклама концепции государства ТУРАН — государства всех тюрков, к которым близки и чуваши.

Опубликовано «Обращение к чувашскому народу» татарских единомышленников ЧАП из «Азытлыка», Иттифак (а по сути — руководство к действию): «Для реализации права на национальное самоопределение всем порабощенным народам Российской империи... необходимо воссоздать или восстановить свою национальную государственность... Все решения, принятые Москвой или же ныне существующими государственными структурами на территории всех порабощенных народов Российской империи, впредь до завершения самоорганизации коренных народов... считать незаконными и насильно навязанными...».

Созданная таким образом организаторами конгресса политическая атмосфера также сыграла свою роль в повороте его работы в нужное для них русло.

Я бесконечно далек от отрицания положительных моментов в работе конгресса, как и отождествления надежд и чаяний всех делегатов с политическими целями верхушки ЧАП, прочно обосновавшейся в руководстве ЧНК, и полностью присоединяюсь к уже данным высоким оценкам некоторых итогов работы ЧНК. Но нельзя закрывать глаза и на политическое содержание принятых документов.

И хотя у ЧНК неизбежно возникнут серьезные проблемы при попытке зарегистрироваться как в Министерстве юстиции ЧР (поскольку деятельность ЧНК будет носить межрегиональный характер и целому ряду других причин), так и в Минюсте России из-за явного несоответствия конституциям РФ и ЧР, нельзя недооценивать всю степень опасности, исходящей от этой организации. Аналогичные национальные конгрессы уже спровоцировали немало конфликтов в различных регионах.

Конгресс проигнорировал содержащийся в докладе Э. А. Кубарева анализ нынешнего состояния республики и перспектив её развития. Не был услышан и Л.П. Кураков: «Как бы красиво мы ни говорили, без эффективной экономики реализовать многие наши желания просто невозможно».

Несмотря на немалые финансовые затраты, ЧНК не внес никакого вклада в решение социально-экономических проблем республики. Наоборот, реализация его программы неизбежно приведет к новому росту государственных расходов без какой-либо отдачи.

ЧНК, провозгласивший себя «высшим представительным собранием чувашской нации», явно претендует на выполнение властных функций, считает себя вправе навязывать определенные политические решения Верховному Совету, Совету Министров, пренебрегая законом и бесцеремонно залезая в карман государству.

Под крылышком ЧНК, под шумок был проведен и так называемый «1-й съезд чувашской молодежи», в обращении которого, в частности, говорится о создании, если не сегодня, то завтра, если не завтра, то послезавтра независимого Чувашского Государства, полноправного члена ООН.

Положено начало формированию по сути альтернативного органа власти, т. е. становлению в республике двоевластия.

Сегодня очевидна лживость предвыборной кампании кандидата в Президенты А. Хузангая и его сторонников, пытавшихся скрыть свои цели о выходе из России. С образованием ЧНК сформирована политическая программа, официальная идеология национал-сепаратистских сил в Чувашии. Им осталось сделать только один шаг (например, навязав свою волю ВС) — и вся полнота государственной власти со всеми вытекающими последствиями окажется в их руках.

Сегодня, пока еще, не поздно, необходима незамедлительная правовая оценка принятых ЧНК документов Минюстом ЧР. Недопустимо и бездействие руководства Верховного Совета, Совета Министров, представителя Президента России, промолчавших на конгрессе. От всего ВС требуется твердая позиция по защите основ конституционного строя ЧР и РФ, осуждение попыток создания параллельных структур власти, вмешательства общественной организации в дела государственных органов, государственного финансирования общественных организаций за счет кармана налогоплательщиков.

Нынешний курс ЧНК при нерешительности ВС и органов государственного управления ЧР неизбежно приведет к общественно-политическому кризису. Стремление конгресса к изменению статуса Чувашии как республики в составе Российской Федерации, требование введения лишь одного государственного языка — чувашского, дискриминационной по сути концепции гражданства в конечном счете призваны реализовать тезис о народе-хозяине.

Как заявил на конгрессе А. Хузангай: «Мы (чуваши) должны быть хозяевами своей республике». При этом речь вовсе не идет о реализации общепризнанного демократического принципа самоуправления всего народа республики на основе приоритета прав человека и равенства прав граждан. Сколько пропагандистских усилий было потрачено, чтобы создать впечатление, что кандидату в Президенты республики А. Хузангаю чужд пресловутый лозунг «Чувашия — для чувашей», такой же отвратительный, как «Германия — для немцев» или «Россия — для русских». А в чем разница между этими двумя тезисами? Если один народ — хозяин, то кто же остальные: рабы, слуги, бесправные граждане второго сорта?

Поэтому требования ЧНК, а по сути, ЧАП — это прямой путь к межнациональным и социально-экономическим потрясениям в республике. Вполне может сбыться пророчество наставника наших национал-патриотов из азербайджанского Народного фронта (который говорил об «успехах» в Азербайджане, так и не назвав ни одного конкретного): «Уверен, что мы будем радоваться вместе». Чему? Еще одному Карабаху?

Главная задача демократических и всех здоровых сил Чувашии сегодня — остановить рвущийся к власти национал-тоталитаризм. Мы должны предотвратить надвигающуюся беду совместными усилиями.

С. ТАРАСОВ.
*«Советская Чувашия», 5.11.1992.*

## КОГДА ЭМОЦИЙ ЯВНЫЙ ПЕРЕХЛЕСТ

Из целого ряда публикаций, порой диаметрально противоположных в оценках прошедшего Чувашского национального конгресса, две привлекли мое внимание своими чрезвычайно емкими названиями: «Свет и тени» А. Ермолаева («СЧ», 22.10.92 г.) и «У опасной черты» С. Тарасова («СЧ», 5.11.92 г.). Первая, на мой взгляд, осталась незаслуженно не замеченной хотя бы потому, что её писал юрист. Так по крайней мере называет себя автор. К этой статье мы еще вернемся.

С. Тарасов, лидер одной из самых малочисленных пока в республике политических партий, и на этот раз не изменил своему амплуа. И на этот раз он обрушился громом и молнией на «национал-радикалов», «А. Хузангая и его сподвижников», партию Чувашского национального возрождения (ЧАП), которая, насколько мне известно, никаких решений по форуму чувашского народа не принимала. Не стесняет себя молодой политик и в выражениях — «политическое мошенничество», «политически неискушенная аудитория», «допотопное убожество», «лживость предвыборной кампании кандидата в Президенты А. Хузангая», «рабы, слуги, бесправные граждане второго сорта», «еще один Карабах» и многое другое явно перехлестывают через край. Абсолютную нетерпимость к национальной идее еще как-то можно объяснить. Но когда все это на уровне «кто-то кому-то сказал и что-то где-то услышал», когда большинство фактов вообще не соответствуют действительности, попытка спора с оппонентом откровенно теряет смысл.

А. Ермолаев в отличие от предыдущего автора проводит конкретный юридический анализ документов, принятых ЧНК. Поэтому юристу Ермолаеву, в меру своих возможностей, хотелось бы оппонировать на языке юридическом.

В начале своего юридического опуса автор, словно прикрываясь мнениями председателя комиссии Российского парламента Н. Медведева и заведующего общим отделом аппарата Верховного Совета Л. Прокопьева, пишет, что на конгрессе упомянутые товарищи «обратили внимание общественности на то, что ряд правовых аспектов документов противоречит Федеративному договору, нормам Конституции Российской Федерации и Конституции Чувашской Республики». Действительно, московские гости говорили «о ряде правовых аспектов». Но конкретно ни один такой аспект не был показан и раскрыт. Поэтому ссылка на авторитеты в данном случае не совсем уместна.

Собственно анализ А. Ермолаев начинает с Устава ЧНК. В пункте 1.1, напомню, говорится, что Конгресс — общественная организация, действующая в соответствии с законодательством. Каким — для автора неясно. Очень жаль, что юристу приходится объяснять юридические прописные истины. Ведь совсем не обязательно перечисление всех нормативных документов, ибо их число в законодательстве постоянно меняется: появляются новые и т. д. Здесь достаточно было отметить, что ЧНК — организация общественная. Это значит, что она в своей деятельности руководствуется Конституцией РФ и Конституцией ЧР, Законом «Об общественных объединениях в Чувашской Республике» и иным действующим законодательством (см. ст. 3 упомянутого Закона).

Автора смутила фраза из обращения конгресса к радиостанции «Свобода». В нем подчеркивается, что ЧНК является высшим представительным органом чувашского народа. «Что же касается высшего представителя народа, то таковым, – пишет А. Ермолаев, – является Верховный Совет Чувашской Республики... Иными словами, Конгресс становится выше законных органов власти».

Слишком серьезное обвинение. Однако обратимся к праву. Каждый уважающий себя юрист, конечно же, должен изредка почитывать и Конституцию родной республики, где черным по белому начертано: «Высшим органом государственной власти Чувашской Республики является Верховный Совет Чувашской Республики» (ст. 92). Эту государственную власть создавали и создают чуваши, русские, татары, мордва – все жители республики. **По этой причине Верховный Совет никак не может являться высшим представительным органом чувашского народа, разбросанного волею судьбы по всему свету. Конгресс же поставил одной из своих задач создание общественной организации, учредителями которой явились бы представители чувашского народа.** Организации, отнюдь не претендующей на роль органов государственной власти и управления. Так что претензии автора **здесь абсолютно беспочвенны.**

Что касается цитируемого автором выражения А. Хузангая из «Чебоксарских новостей» относительно обязательности выполнения решений конгресса, то так, наверное, мог бы заявить каждый лидер каждого уважающего себя общественного объединения. Ясно одно, что все решения форума чувашского народа носят рекомендательный характер.

Достаточно много места в анализируемом материале отводится вопросам финансирования ЧНК. Автор делает вывод, что Конгресс – организация общественно-политическая, и поэтому он не может получать денежные средства из государственного бюджета. На самом деле Закон «Об общественных объединениях в Чувашской Республике» (ст. 5) запрещает финансирование государством деятельности политических партий и иных общественных объединений, преследующих политические цели, за исключением случаев, связанных с избирательными кампаниями. Но что понимать под «политическими целями»? К сожалению, толкования данного термина не дали ни бывший парламент бывшего СССР, ни российский, ни наш чувашский. Можно попытаться обнаружить кое-какие нити ответа на поставленный выше вопрос. В приемлемом для нас значении слово «политический», по словарю С. Ожегова, относится к деятельности органов государственной власти и управления, а также к деятельности общественных классов, партий, организаций, определяемой их интересами и целями. Получается, что любая деятельность любого общественного объединения – деятельность политическая. К тому же если к сказанному добавить, что все общественные организации, согласно Конституции республики, имеют право выдвижения кандидатов в народные депутаты (ст. 84) и законодательной инициативы (ст. 97), то действительно ситуация превращается в тупиковую.

Признаюсь, это слабое звено в законодательстве. Надеюсь, вопрос будет разрешен с принятием Верховным Советом республики закона о политических партиях, работа над которым ведется.

Из Устава конгресса следует, что «денежные средства ЧНК формируются из добровольных взносов и пожертвований организаций и физических лиц, поступлений от мероприятий, проводимых в соответствии с Уставом ЧНК, а также других, не запрещенных законом, поступлений (п. 5.3). А также: «Финансирование деятельности ЧНК и его исполнительных структур МОЖЕТ (выделено мною. – П. К.) осуществляться целевыми взносами из республиканского бюджета ЧР, федерального бюджета РФ, взносов республик, краев, областей, округов с компактно проживающим чувашским населением» (п. 5.4). Как видим, и в этом вопросе нарушений законодательства нет. Так как доказать, что ЧНК преследует политические цели, невозможно. А закон, как известно, не запрещает финансирование иных общественных объединений.

Еще одно положение, с которым А. Ермолаев выражает несогласие, – из Декларации о национальном возрождении чувашского народа: «Компактно проживающее чувашское население за пределами Чувашской Республики может защищать свои права через создание национально-территориальных единиц (район, сельский Совет)». У автора оно вызвало массу вопросов: «Есть ли на то согласие регионов? Как быть со смешанными семьями? Не захотят ли граждане и нашей республики образовать свои татарские, мордовские, русские районы?» В этом он видит нарушение конституционных требований и даже – не больше и не меньше – попытку к разжиганию национальной розни. Чем же тут ответить юристу? Очевидно, только одним: он явно отстал от хода законотворческой работы ВС РФ. Комиссия по национально-государственному устройству и межнациональным отношениям, которую возглавляет известный Н. Медведев, разработала проект Временного положения «О национальном районе, национальном поселке, национальном сельском населенном пункте в Российской Федерации». И он уже прошел первое чтение в Совете Национальностей. Согласно плану законодательной деятельности ВС РФ на 1992 год, окончательное его рассмотрение состоится в этом месяце. Объем настоящей статьи, к сожалению, не позволяет остановиться на названном документе. Скажу только, что в нем достаточно подробно изложен порядок образования национальных районов, поселков и населенных пунктов. Если бы с ним нашел возможность ознакомиться А. Ермолаев, уверен, у последнего не возникли бы все его риторические вопросы. Ну нельзя же, не зная броду, лезть в воду.

Справедливости ради следует отметить, что положение еще не принято Верховным Советом, им рано руководствоваться.

Неоднозначно иногда трактуется и резолюция ЧНК «О заявлении в Организацию Непредставленных Наций и Народов». Связано это, видимо, с тем, что кто-то путает ОННН с Организацией Объединенных Наций (ООН), а кто-то и вовсе мало что о ней слышал или читал. Последнее со всей очевидностью относится и к автору статьи «Свет и тени». ОННН образована 11 февраля 1991 годв в Гааге. Тогда представители 15 народов подписали её устав. В организации сейчас насчитывается около 30 действительных членов и 20 членов – наблюдателей. Учреждение нового объединения было вызвано необходимостью защищать интересы народов. Посудите сами: в мире насчитывается несколько тысяч наций и народностей, но только чуть более полутора сотен государств представлены в ООН. Кстати, в ОННН могут вступать и государства, по тем или иным причинам не являющиеся членами ООН и других международных организаций.

Статья А. Ермолаева, признаться, меня несколько обескуражила. Думаю, и читатели со мной согласятся, что слово юриста должно быть весомым, логически связанным, а главное – юридическим.

И в заключение еще один небольшой сюжет. Уж больно он щепетильный.

В резолюции «О принципах Закона Чувашской Республики «О гражданстве» отмечается, что гражданство «в основном должно приобретаться: а) по рождению; б) в результате его признания; в) в результате приема в гражданство. В случае приобретения гражданства по рождению особого регулирования должен требовать вопрос соотношения гражданства детей и родителей... Высшим государственным органом, уполномоченным решать вопросы гражданства Чувашской Республики, должен являться Президент Республики». Несколько отрывочных положений резолюции вынужден привести по той лишь причине, что их именно цитирует в своей статье молодой политик С. Тарасов. Достаточно интересный по содержанию и, на мой взгляд, необходимый документ автор называет «недостойным современного цивилизованного общества» и «допотопным убожеством». Попро-

бую доказать, что последнего определения заслуживает не документ, принятый конгрессом.

Обратимся к Закону РФ «О гражданстве Российской Федерации». «Граждане Российской Федерации, постоянно проживающие на территории республики в составе Российской Федерации, – говорится в нем (п. 2 ст. 2), – являются одновременно гражданами этой республики». Последнее, безусловно, должно быть официально оформленным. Без своего закона этого не сделать.

Первый знак вопроса С. Тарасов ставит после слова «в основном» (см. отрывок резолюции). Ничего удивительного в документе нет. Просто пунктами а, б и е определены далеко не все основания приобретения гражданства. Чтобы убедиться в этом, достаточно ознакомиться со ст. 12 вышеупомянутого российского закона. Здесь дан достаточно полный их перечень. Но и он со временем может видоизмениться.

Вопрос соотношения гражданства детей и родителей – далеко не праздный, а продиктован самой практикой. Постарались его учесть и особо регулировать и российские законодатели, когда целый ряд статей (см. 14–17, 25–29) закона посвятили гражданству детей и родителей, опекунов и попечителей. К примеру, первые четыре статьи определяют гражданство детей: з) родители которых являются гражданами РФ; б) один из родителей которых является гражданином РФ; в) родители которых неизвестны; г) родители которых не состоят в гражданстве РФ. Несомненно, к таким моментам следует подходить трезво и со знанием нормативных документов, не давая волю своим эмоциям.

Чрезвычайно эмоционально С. Тарасов воспринимает Президента Чувашской Республики, которого, правда, пока нет. Но который уже превращает автора статьи в «винтик государственной машины или даже одного человека – вождя». Напомню автору, что еще в прошлом году Верховным Советом приняты законы о Президенте и о выборах Президента республики. И никто их пока не отменял. В современных цивилизованных обществах с президентской формой правления глава государства везде, как правило, по делам о гражданстве наделен достаточно большими полномочиями. Чего далеко ходить – достаточно внимательно ознакомиться со ст. 33 российского Закона о гражданстве. И все станет на свое место.

Очевидно, не всеми должным образом воспринята значимость прошедшего форума чувашского народа. Но это вполне закономерно. Издержки при проведении конгресса, конечно же, были. Они могут послужить темой отдельного разговора. Но куда более важно их учесть и постараться избежать в будущем. А пока, как видим, эмоций явный перехлест.

Петр КРАСНОВ,
народный депутат ЧР.
*«Советская Чувашия», 14.11.1992, №229.*

## ЗАЯВЛЕНИЕ О ПОЛИТИЧЕСКИХ ИТОГАХ ЧУВАШСКОГО НАЦИОНАЛЬНОГО КОНГРЕССА (ЧНК)

Вопреки всеобщему ожиданию, декларированные при созыве Конгресса цели – решение вопросов изучения истории, развития культуры, языка, сохранения и приумножения духовных ценностей – были отодвинуты на второй план, а большинство принятых на конгрессе документов носит чисто политический характер.

ЧНК как общественная организация явно превысил свои полномочия, принимая решения не столько по вопросам национального развития чувашского народа, сколько по проблемам государственной жизни республики, непосредственно затрагивающим интересы всех её жителей: о государственном статусе Чувашской Республики, о гражданстве, о государственном языке и другие. В принятых Конгрессом практически без обсуждения документах отражены взгляды лишь одной политической группировки, взявшей курс на создание независимого Чувашского государства и отделение от России.

Никто не должен заблуждаться относительно политической сути итогов работы ЧНК:

– на базе национальной идеи окончательно сформирована политическая программа и официальная идеология национал-сепаратистских сил Чувашии;

– образована политическая организация, финансируемая государством;

– ЧНК создан как аналог уже существующих национальных конгрессов в других регионах, деятельность которых привела к дестабилизации политической обстановки, обострению межнациональных отношений, а в целом ряде случаев – к кровавым конфликтам;

– сформирован орган, претендующий на выполнение властных функций, игнорирующий Конституции Российской Федерации и Чувашской Республики, Федеративный Договор;

– принятые документы противоречат всеобщей Декларации прав человека, Конституциям России и Чувашии, закону «Об общественных объединениях», законам о государственных языках Чувашии и России.

Все национальные движения начинали свою деятельность под флагом защиты национальной культуры. Затем неизбежно происходил переход к чисто политическим целям, что еще раз подтвердил Чувашский национальный Конгресс. Активисты национального движения использовали её в чисто политических целях.

Это не может не отразиться и на самой культуре, которая, как и все население нашей республики, становится заложницей политических игр. Курс, взятый лидерами Конгресса, неизбежно ведет к росту недоверия между народами, конфликту с конституционными органами власти, подчинению экономики идеологическим догмам.

Мы озабочены бездействием, равносильным попустительству, как на самом Конгрессе, таи и после его завершения, руководства Верховного Совета, Совета Министров Чувашии, представителя Президента России. Это лишь провоцирует новые посягательства на прерогативы государственной власти. Республика поставлена на грань двоевластия.

Особая ответственность ложится на тех народных депутатов Чувашии, которые участвовали в подготовке и принятии решений, чреватых негативными последствиями.

Мы требуем от Министерства юстиции Чувашской Республики незамедлительной правовой оценки принятых ЧНК документов, а также рассмотрения вопроса: возможна ли регистрация организации, объявившей себя «высшим представительным собранием чувашской нации и финансируемой государствними органами, а значит, налогоплательщиками?

Прошедшие «выборы» делегатов не имели ничего общего с Положением о выборах на ЧНК: сходы (собрания) граждан в республике, особенно в Чебоксарах, фактически не проводились, население об этих собраниях не было информировано и не участвовало в выборах.

Капитуляция перед требованиями ЧНК, заигрывание с ним, особенно в части изменения статуса Чувашии как республики в составе Российской Федерации, принятые недостойной современного цивилизованного общества концепции о гражданстве, признание государственным только чувашского языка неизбежно приведут к дестабилизации ситуации в республике, межнациональным и социально-экономическим потрясениям.

Мы надеемся, что Верховный Совет Чувашской Республики не допустит зтого. Конституционный порядок должен быть реши-

тельно защищен во имя жизни и спокойствия граждан кашей республики.

Николай МОИСЕЕВ,
председатель Чувашского республиканского отделения
Демократической партии России;
Борис МИРОНОВ,
председатель правления Чувашской региональной
организации народной партии «Свободная Россия»;
Сергей ТАРАСОВ,
сопредседатель региональной организацин Республиканской партии России;
Владимир КАТАЕВ,
член совета представителей Российского союза трудовых коллективов.

*«Вучах», 14.11.1992, №40.*

### Пресс-клуб
## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН ЕРТӰҪИСЕМ РЕСПУБЛИКĂРА «ЧĂВАШ НАЦИОНАЛИЗМНЕ» ШЫРАНИНЕ СИВЛЕҪҪĔ

*Иртнĕ вырсарни кун Чăваш радиокомпанийĕн «70 те 7» студийĕ пресс-клуб ларăвне ирттерчĕ. Тӳрĕ эфирта ыйтусене хуравлакансем Чăваш наци конгресĕн президенчĕ А. Хусанкай, вице-президенчĕ В. Никитин-Станьял тата Кĕҫĕн Канаш членĕ В. Туркай пулчĕҫ.*

Студи юпа уйăхĕнче иртнĕ Чăваш наци конгресĕ ҫинчен ӳкернĕ «Мăскал хакĕ» документлă фильм кăтартнăран-и (унта наци аталанăвĕнчи ҫивĕч ыйтусене ятран асăннă), пресс-клубри калаҫу пĕрре пăхма «пулса ҫитмерĕ», хĕрсех каяймарĕ пек те курăнчĕ ахăр – ыйтăвĕсем те лăпкă, хуравĕсем те танлă пулчĕҫ. Анчах ҫак танлă хуравсенче, уйрăмах президент калаҫăвĕнче, тем тесен те, чăваш ĕҫĕшĕн ҫĕкленнĕ хастар чăвашсен ăс-хакăлĕ те, ят-сумĕ те, ҫав йывăр ĕҫĕн таса пархатарлăхĕпе ҫутă пуласлăхĕ те яр-уҫҫăн палăрчĕҫ, В. Туркайпа В. Станьял кăштах хĕрӳрех сăмахсем калани ҫак сăнара пăсмарĕ ҫеҫ мар, чăвашлăхăн лăпкă ăс-тăнĕпе пĕрлех чĕрĕлĕхĕ те ҫухалсах пĕтменнине кăтартрĕ.

Ҫăтăл-ҫатăл тумашкăн, хамăр ĕҫлесе ҫитереймен ĕҫсемшĕн такама айăпласа кăшкăрашмашкăн майĕсем ҫителĕклех. Уйрăмах юлашки вăхăтра – тĕрлĕ вăйсем чăвашлăх ҫĕкленнипе хăраса ӳкнĕрен ҫав юхăма варалас, провокацилес шухăшлă-тăр, унта та кунта «чăваш национализмĕпе» хăратнă вăхăтра. Сăмахран, Хăрушсăрлăх министерстви халăха Ҫĕрпӳ районĕнче вырăссене хирĕҫ тăракан ҫынна тупса палăртнине пĕлтерчĕ. Тĕрĕссипе ку – 5-6 ҫул каялла пулса иртнĕ факт, ун хыҫҫăн чăвашсене хирĕҫле листовкăсем сарнă темиҫе ҫынна та тупса палăртнă, анчах «чăваш национализмĕпе» кĕрешме тĕллев лартнă чух урăхла тĕслĕхсене аса илмеҫҫĕ. ЧНК президенчĕ А. Хусанкай пресс-клубра ҫакăнтан «питĕ тĕлĕннине» пĕлтерчĕ.

カ Каларăм ĕнтĕ, В. Трофимова («Чебоксарские новости»), Н. Иванова («Чăвашьен»), М. Иванов («Советская Чувашия»), В. Васильев («Молодежка»), Г. Максимов («Хресчен сасси»), А. Крыльцов («Тантăш»), М. Желтов (Чăвашрадио) журналистсем панă ыйтусем лăпкăн илтĕнчĕҫ, анчах вĕсем хускатнă ыйтусем капашсăр ҫивĕч те «вĕри»: мĕншĕн халĕ те Чĕмпĕрти И. Яковлев шкулĕнче чăваш учителĕсем хатĕрлемелли педагогика училищине уҫаймастпăр? Мĕншĕн ЧНК ĕҫĕ-хĕлĕ юлашки вăхăтра сӳрĕкленнĕ пек туйăнать? Мĕншĕн ЧНК «национализм» ыйтăвĕпе провокаци тăвакансене хурав памасть? Мĕншĕн вырăс православи чиркĕвĕ чăн чăваш тĕнĕ чĕрĕлнине ҫивĕч хирĕҫлет? Мĕншĕн вырăсла хаҫатсем ЧНК хыҫҫăн чăвашлăха хирĕҫле статьясем ҫеҫ пичетлеҫҫĕ? Тата ытти те, тата ытти те. Вĕсене татса памалли ҫулйĕрсем – хуравсенче. В. Станьял шучĕпе, Чĕмпĕрте чăваш педучилищине уҫманни шăпах ĕнтĕ ҫав облаҫри 120 пин чăваш ҫыннин (кӳршĕ облаҫсене шута илсен – 300 пин чăваш ҫыннин!) наци ыйтăвĕсене тивĕҫтерессине ним вырăнне те хуманни, наци хирĕҫĕвĕсем патне ятарласа илсе пыни. А. Хусанкай 1917 ҫулта Чĕмпĕрте иртнĕ пĕрремĕш Чăваш наци съезчĕн йышăнăвĕсемпе паллаштарчĕ – эпир паян та ҫав ыйтусене пурнăҫлассишĕн тăратпăр, апла тăк юлашки 75 ҫул хушшинче ҫав ыйтусене нимĕн чухлĕ те татăклăн татса паман. Акă вăл – «национализм» шыракансене панă хурав.

Пресс-клубра хăш-пĕр уйрăм темăсем ҫинче кирлинчен ытларах чарăнса тăтăмăр-и, анчах чи пахи ҫакă – чăваш ĕҫĕ аталансах пырать. Камшăн кулăшла-тăр ҫакă, кама вĕчĕрхентерет, теприн капла та суранлă чунне тата ыраттарать пуль, ҫапах та ку – пурнăҫ. Чăваш пурнăҫĕ. Шăпах ҫав пурнăҫа пур енлĕн тулли тăвас тĕллевпе ĕҫлет те ĕнтĕ ЧНК. Апла тăк ЧНК передачисем, ман шутпа, кашни эрнерех программăра ятарлă вырăн тупмалла. Туркай калашле – хăш-пĕр вăйсем ЧНК тата ЧАП ҫыннисене республика халăхĕ умĕнче «националист», «фашист», «алкоголик», «хăрушă тискер кайăк» пек кăтартасшăн ҫуннă чухне уйрăмах кирлĕ ҫакăн евĕр передачăсем: ҫынсем хăйсем курса ĕненччĕр – Хусанкай та, Станьял та, Туркай та нимĕнле хăрушă чĕр чунсем те мар, ăслă-тăнлă, йĕркеллĕ ҫынсемех. Халăхăмăр ытла ухмахах мар-тăр-ха, кам йĕркеллĕ ҫын, кам йĕркеллĕ ҫын маррине уйăрса илĕ...

Илле ИВАНОВ, пресс-клуба хутшăннă журналист.

*«Хыпар», 1.12.1992, 238 №.*

### Наци ыйтăвĕ
## ВУТПА АН ВЫЛЯ

*Ку саманара нумай япаларан тĕлĕнме пăрахрăмăр ĕнтĕ. Анчах тепĕр чух шалт аптăратакан ĕҫ-пуҫпа тĕл пулма тивет. Тĕплĕнрех тишкерсен вара питех те интереслĕ пĕтĕмлетӳсем патне пырса тухатăн.*

Совет самани историе чарăнми кĕрешӳсемпе кĕрсе юлнине пурте пĕлетпĕр. Граждан вăрҫи, коллективизаци, индустриализаци, «халăх тăшманĕсене» миллионĕ-миллионĕпе пĕтерни, «буржуаллă культурăна» кăклани (паллах, ҫак тĕллеве пурнăҫа кĕртме интеллигенцие аркатмалла пулнă), империализмпа кĕрешни т.ыт.те, т.ыт.те.

«Мухтавлă кĕрешӳсен» ретĕнче «национализмпа» (е «националшовинизмпа») хаяр вăрçă вăрçни, ахăртнех, пирĕн ас тăвăмпа ăс тăвăмра уйрăмах тарăн йĕр хăварнă. Халĕ, ав, вырăс (тутар, пушкăрт, чăваш) чĕрĕлĕвĕ пирки калаҫман е ҫырман кун иртмест.

**Наци чĕрĕлĕвĕ – мĕн тарăн хăрушă сăмахсем! Эппин, нацисем е чăннипех вилес патнех ҫитнĕ, е ҫав тери йывăр чирпе аптăраҫҫĕ.** Сăмахăм кунта каллех чăваш халăхĕ пирки кăна мар. Эпир, паллах ĕнтĕ, иртнĕ саманан синкерлĕ еткерĕнчен хамăрăн вăйпа кăна хăтăлаймăпăр. Вырăс халăхĕ те – ҫакна никам та хирĕҫлемест – ҫитмĕл ҫул ытла тăсăлнă «аслă экспериментсен» тапхăрĕнче нумай ҫухату тӳснĕ. Апла тăк вырăс чăваша, чăваш вырăса ăнланни, пулăшса пыни кирлĕ.

Анчах тоталитаризм саманинче вырăс культури Анăҫра хăватлăн аталаннине шута илер (Бердяев, Набоков, Солженицын т.ыт.те). Вырăс халăхĕн кунтипе «тулашри» культурине пĕрлештерме вара паян кăткăс мар. Халь шăпах ҫапла пулса пырать.

Халĕччен «вак халăх» ятпа ҫӳрекен нацисене пӳрнĕ синкер чăннипех те нихăҫан тавăрайми, чĕртсе тăратайми ҫухатусем кӳчĕ. Пĕлетпĕрҫке: чăвашсен, ҫармăссен, ытти «вак» халăхсен интеллигенцийĕ революци тĕлнелле йĕркеленме кăна пуҫланнă. **Граждан вăрҫи, каярахпа «национализма», «буржуаллă культурăна» хирĕҫ пуҫарнă хăрушă вăрçă пирĕн йышши халăхсен интеллигенцийĕн малтанхи ăрăвне тĕппипех аркатнă тесен те йăнăш пулас ҫук.** Репрессилесе тĕп тунă е репрессилемесĕр, анчах тулли ăс-хакăлпа ĕҫлеме чарнă ҫыравҫăсемпе тĕпчевҫĕсем, ӳнерҫĕсем, интеллигенцин ытти сийĕсем нимĕнле «халăх тăшманĕ» те пулманнине патшалăх кая юлса та пулин йышăнчĕ. Вĕсене пурне те реабилитациленĕ. Вĕсем ирĕклĕн ĕҫлесе пурăннă тăк культурăмăр еткерĕ калама ҫук пуян пулмаллаччĕ.

Халăхăмăр ятне-шывне ҫухатни, йăх-несĕл кăкĕсене татни, майĕпенмайĕпен ирĕлсех пыни – хирĕҫлейми чăнлăх. Коммунизм идеологийĕ «историллĕ ҫĕнĕ пĕрлĕх» – совет халăхĕ – йĕркелес тĕллеве пурнăҫа кĕртсе калама ҫук пысăк «ҫитĕнӳ» турĕ.

Пĕртен пĕр вырăс чĕлхи кăна сумра пулни пĕртен пĕр вырăс нацийĕ ҫеҫ чаплăн аталаннине пĕлтермест. Социологсем тахҫанах палăртнă: «вырăсланнă» тĕрлĕ наци ҫыннисем вырăс культурине туллин «алла илеймеҫҫĕ», вĕсенчен ытларахăшĕ, чĕлхипе «вырăс» пулсан та, юнĕпе-

чунĕпе «айккинче» (маргиналлăх) тăрать: вырăс культуринчен те, чун-юн панă ашшĕ-амăшĕн культуринчен те. Çакнашкал çынсене ансат культура – эрзац-культура çывăхрах.

СССР хăйĕн колони политикине вырăс чĕлхипе пурнăçласа пыни паян никама пăхăнман патшалăхсенче пурăнакан «вырăс чĕлхиллĕ» çынсене инкек кăтартать. Чăн-чăн трагеди!

«Вак» халăхсен инкекĕ тата хăрушăрах, тарăнрах. Мĕншĕн тесен маргиналлăх тутăхĕ пире витĕрех çапса лартнă. Маргиналсем, «аслă держава» шовинисчĕсем пекех, наци ыйтăвне питĕ чĕрре кĕрсе йышăнаççĕ. Чăваш чĕлхин статусне çĕклес ыйтупа хаçатсенче уйрăмах çивĕч тавлашу пырать. Чăваш чĕлхине кăна патшалăх чĕлхи тăвасси вĕсене питĕ тарăхтарать. Çак ĕçе тӳрех мар, майĕпен-майĕпен пурнăçламалла тесен те шарт та март хирĕç. Чăвашла никам та вăйпа вĕрентесшĕн мар тесен те тăнламаççĕ. Чăваш халăхне аталантарас текенсене, тахçантанпах капланса тулнă ыйтусене çивĕччĕн лартакансене хăрушă ярлăксемпе явакласçĕ, пархатарлă тĕллевсене кутăн-пусăн çавăрса хакласçĕ.

**«Национализм» пирки**

Кунта чи интересли (тата чи хăрушши) çакă: «национализмпа» кĕрешмелли меслетсем тахçан усă курнисемех: элек, ятлав-питлев, административлă мерăсемпе хăмсарни... Шутлатăн та – иртнĕ саманари юнлă репрессисем пире нимĕн чухлĕ те ăс паманнине ăнланса илетĕн. Чăваш наци конгресĕ хыççăн «национализмпа» «сепаратизма» хирĕçле «вăрçă» сисĕнмеллех вăйланнине палăртмасăр иртме çук. Конгресс йышăннă резолюцисене мĕнле кăна хакламарĕç ĕнтĕ.

Раççей партийĕсен кунти организацийĕсен ертӳçисене кăштах ăнланма пулать пек. Вĕсем Конгресченех Чăваш Енре наци ыйтăвĕ çук тесе çирĕплететчĕç. Вĕсемшĕн Шупашкарта, ытти хуласенче, райцентрсенче чăваш ачисем валли ятарлă садиксем çукки, шкулсенче Чĕлхе саккунне пурнăçа кĕртме нимĕн те туманни, чăваш кĕнеки кăларас ĕç кĕç-вĕç хупăнасси, ертсе пыракан вырăнсенче чăвашсем сахалли, республика область шайĕнчен иртейменни, яланах Мускав куçĕнчен пăхни т.ыт. çивĕч, кăткăс ыйтусем кулянтармаççĕ. **Пĕ-ĕ-ĕчĕкçĕ Чăваш Республики пы-ы-ысăк Раççее кӳрентерме пултарасси вара çав тери хытă сехĕрлентерет.**

Наци конгресĕнче «Раççейрен тухас» ыйтăва хускатманни те вĕсемшĕн паллă. Анчах... «национал-сепаратизм» е «национал-шовинизм» текен пулăмсене, чăннипе пурнăçра çук пулăмсене, ырми-канми «тăрă шыв» çине кăлараççĕ.

«В последнее время и в Чувашии начали мутить народ. Толкать его к междоусобице, к гражданской войне. Я сам коренной чуваш, но выступаю против этих самозванцев, якобы борющихся за возрождение нации... Для сохранения чувашской нации я, как потомственный чуваш, предлагаю Верховному Совету республики принять закон, запрещающий национальный шовинизм». Çак цитатăна вырăсла тухакан пĕр хаçатран илтĕмĕр. Çакнашкал çырусем сахал мар пичетленчĕç. Авторĕсем вăл е ку «националист» «граждан вăрçи пуçлама» мĕнлерех чĕннине е хĕтĕртнине çирĕплетекен пĕр тĕслĕх те илсе кăтартайманнинчен тĕлĕнмĕпĕр.

Кашнин хăйĕн шухăшĕ теме те пулать-тĕр. Çапах кăткăс ыйтусемпе тавлашнă чух шайлăх-виçелĕх пулмаллах ĕнтĕ. Паянхи кăткăс саманара лăпкăн каласса, аргументсемпе витерме пĕлни чи пахи. Тĕрĕссипе, вăрçи никама та кирлĕ мар, пĕр чĕлхепе калаçакан çыннăн е урăх наци çыннин юнне юхтарса, хĕç-пăшалпа усă курса пĕр ыйту та татса параймастăн, пач урăхла – ыйтусем, хирĕçӳсем кăткăсланаççĕ çеç. Шăпах çакна кăтартса парать грузинсемпе грузинсем (Гамсахурдиана влаçран сирнĕ чух), грузинсемпе осетинсем тата грузинсемпе абхазсем, осетинсемпе ингушсем, таджиксемпе таджиксем хаяр вăрçă вăрçни.

**«Фашизм» кăна çитменччĕ...**

Наци юхăмĕн ертӳçисемпе Чăваш наци конгресне йĕркелесе иртернĕ çынсем çине темĕн тĕрлĕ «çылăх» тиесе тултарни чăннипех те политика провокацийĕ. «Вучах» хаçатăн чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕсенче тухнă номерĕнчи пĕр çырăва шăпах çапла хакламалла. Ăна вырăсла çырнă. Н. Авелин чăваш (унччен вăл хăйсене «православный христианин» теме кăмăллатчĕ) «Прокурору ЧР Жучкову Е., министру юстиции ЧР Яковлеву Н. Открытое письмо» янă. «Вучах» хаçатăн ятарлă корреспонденчĕ маларах çак хаçатрах пичетленнĕ статьясенче Чăваш наци конгресне хаклама чăвашпа вырăс чĕлхинчи чи усал та хаяр сăмахсемпе усă курнине шута илсен, çакă «Открытое письмо» авторĕн хăйне майлă пĕтĕмлетĕвĕ теме юрать пулĕ.

Вулакана Авелинăн хăш-пĕр шухăшĕсемпе паллаштарар:

«Чувашский национальный Конгресс – это сборище необольшевиков в лице ЧАП. Бывшая партийная номенклатура (Н. Зайцев, Э. Кубарев, Б. Яковлев) сознательно пошли на стыковку с лидером так называемых национал-патриотов А. Хузангаем».

Авелин шучĕпе, В. Станьялăн «... после успешного проведения ЧНК, созванного по инициативе Чувашского народного Хурала и ЧАП... начался новый этап национального возрождения» сăмахĕсене «фашизация республики» тесе вуламалла имĕш.

«Примерно 2 млн рублей из 4-х финансировано СМ ЧР, что является нарушением законов ЧР (правительство Викторова должно уйти в отставку). Так же подлежат ответственности директора предприятий, акционерных обществ – спонсоров партии ЧАП (таким же образом в 1933 году захватили власть фашисты в Германии)».

«Вносить в повестку дня сессии ВС ЧР специальный вопрос «Об ответственности должностных лиц и народных депутатов ЧР (Кубарева, Хузангая, Викторова, Зайцева, Мадурова) за подготовку и проведение лжеконгресса, ведущего к осложнению национальных отношений в ЧР».

«...почему так грубо нарушаются конституционные нормы в нашей республике? Читают ли работники этих ведомств статьи, разжигающие межнациональную рознь, в газете «Хыпар»?

Национал-экстремизм в Чувашии не пройдет!

Позор националистам (Н. Лукиянову, В. Тургаю, Илле Иванову, П. Краснову, А. Хузангаю, А. Леонтьеву) и перекрасившимся коммунистам-делегатам (Э. Кубареву, Б. Яковлеву, Н.Зайцеву)».

«Почему газеты (автор çапла çырнă. – А.Л.) «Хыпар» до сих пор не печатает выступления на конгрессе, сотни писем читателей, возмущенных его ходом? Отныне она не имеет права называться народной! Тем более правительственной! Прекратить дотации газете «Хыпар», стоящей на позициях единственной партии ЧАП (тем более ЧАП выпускает на какие-то грязные деньги свою газету на трех языках)!

«Не допустим охоту на ведьм и на истинных (?) чувашского народа! Чуваш Н. АВЕЛИН».

Вулаканăм, сана мĕнле те, мана çăк «чувашăн» юлашки лозунгĕ çав тери кăмăла кайрĕ. Эпĕ ăна, вырăсла тĕрĕсрех çырса, «Вучах» редакцийĕ вырнаçнă çурт тăррине аршăн пысăкăш сас паллисемпе çырса çакма сĕнмешкĕн хăюлăх çитересшĕн.

Паллах, прокурорпа юстици министрне çак цитата аптăратса ӳкересси паллах-ха. Ара, «фашизаципе» тата «национал-экстремизмпа» кĕрешекен, Конгресс йĕркелӳçисене намăслантаракан тата явап тыттарма (Викторов правительствине вара вырăнтан кăларма) чĕнекен Авелин «тухатмăшсене» шырассине кăшкăрсах хирĕçлет-çке. Юрĕ, прокуратурăпа юстици министерствинче ăслă-тăнлă çынсем ĕçленине шута илер те «Вучахри» «чувашсем» патне таврăнар.

«Хыпар» вулакансем кураççĕ пулĕ: «Вучахри» çакнашкал çырусем пирки эпир, тĕпрен илсен, вулакансен шухăшĕсене пичетленĕ. **73 пин экз. тиражпа тухакан хаçат редакцийĕшĕн 3400 экз. тиражлă «Вучахпа» тилĕрсе çапăçни, ăнланмалла ĕнтĕ, сумлах мар.** Паян та Авелин çырăвĕшĕн е çав хаçатри ытти «публицистикăшăн» кăштах та

чĕрре кĕрес килмест. Ара, хут чăтать, «Вучах» вулаканĕсем те урăм-сурăм ятлав-питлеве пит кăмăлласах каймаççĕ-тĕр. (Ахальтен-и «Вучаха» çитес çул валли кăçалхинчен сахалрах çырăннă).

Çав вăхăтрах хăйсене «орган всечувашского национально-демократического движения» текен хаçатăн çырав-шухăшлав тата дискусси меслечĕсем пирки калаçмасăр иртме çук. (Авелин çырăвне тата ытти çырусене «дискусси» теме юрани-юраманнине вулакан хаклатăр).

**Тăрă шыва кам пăтратать?**

Аслă ăрури çынсем, историксемпе публицистсем, вăтăрмĕш çулсенче тухнă хаçатсене вуласа курнисем тӳрех асăрхарĕç-тĕр: **эпир цитатăланă «усă çыру» пĕтĕмĕшпех репресси çави ывăнмасăр çулнă саманари «усă çырусене» аса илтерет.** Хăрушă ярлăксемпе те, аргументсăр айăплавпа та. Çав саманара «буржуаллă националист», «национал-шовинист», «троцкист», «бухаринец», «коммунизм идеологийĕшĕн ют çын» т.ыт. ярлăксем çын пурнăçне татнине е ГУЛАГ тамăкĕнче нушаланассине пĕлтерет. Интереслĕ, «необольшевиксене», «тĕсне улăштарнă коммунистсене», республикăна «фашизацилеме» шутлакансене, «национал-экстремистсене», «нацисене хирĕçтерекен» «Хыпара» Авелинпа «Вучах» еплерех явап тыттарасшăн-ши? Тен, прокуратурăпа юстици министерстви «фашистсене» тата ытти «тăшмансене» чăнласах репрессилессе шанаççĕ? Ку, паллах, питĕ кулăшла, халь вăтăрмĕш çулсем мар. Сталин диктатури вăлерсе пĕтернĕ айăпсăр çынсене (çав шутра чăваш «националисчĕсене» те) тин кăна реабилитациленĕ органсем репрессисен хăрушă хакне пиртен пуринчен те лайăхрах пĕлме тивĕçлĕ. Хаçатра çырнинчен вĕсем политика провокацийĕ тумасси паллă-çке-ха.

Республика халăхĕ, республика тулашĕнче пурăнакан пĕр миллион ытла чăваш Наци конгресне Аслă Совет Президиумĕн йышăнăвĕпе тата мĕн тĕллевпе ирттернине питĕ лайăх пĕлеççĕ. Пĕр пин ытла делегатпа хăна Чăвашсен Аслă пухăвне мĕн тарăн хавхаланса килнине те пурте ăнланатпăр. «Хыпарта» пичетленнĕ нумай-нумай çыру авторне «национал-экстремист» тенинчен кулмалли кăна юлать. «Хыпар» редакцийĕнче «Конгресс мĕнле иртнипе тарăхса çырнă çĕр-çĕр çыру» çукки те паллă. «Вучах» редакцине те унашкал çырусем пымаççĕ пулмалла, ахальтен-и хальлĕхе «Вучахра» Авелин кăна пичетленет тата хăш-пĕр хаçатсенче тухнă çырусене кăлараççĕ.

«Хыпарта» Конгресс идейисене ырлакан çырусем чылай ытларах пичетленнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар. Ăна чăваш кăна вулать: ял чăвашĕ, Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчи чăвашсем. Плюрализм пултăр тесе çынсен ячĕпе хамăр çыру çырнине, паллах, йĕркеллĕ пулăм теме çук.

Авелин çырăвĕнче «фашизаципе» «национал-экстремизм» пирки, «Хыпарти» нацисене хирĕçтерекен статьясем» пирки ĕнентерӳллĕ пĕр тĕслĕх те çуккинчен савăнмалли çеç юлать. Эппин, республикăри лару-тăру лăпкă, тĕрлĕ халăх çыннисем килĕштерсе пурăнаççĕ. Ӳлĕм те çаплах пултăрччĕ.

Анчах... Тĕрлĕ «измсемпе» вĕçĕмсĕр сулкалашсан обществăна провокацилеме йывăрах мар. Национализмпа шовинизм палăрăмĕсем пур тăк (чăвашăн-и, вырăсăн-и, ытти наци çыннисен-и – çав пулăмсен инкекĕ пурне те пĕрешкел пырса çапать) вĕсене чăннипех те тăрă шыв çине кăлармалла. Анчах пĕр-пĕрне урăм-сурăм питлесе мар ĕнтĕ! Кашнин шухăшне тăнласа, ăнланса, ыйтусен сăлтавĕсене тишкерсе.

Хальлĕхе питĕ интереслĕ пулса тухать. Пĕр енне – Конгресс хыççăн – «чăваш национализмĕшĕн» мĕнле кăна усал сăмах тивместши! Тепĕр енĕ – айăплаканни – хăйсене тĕп-тĕрĕс пек тытать. Айăплавçăсене ĕненес тĕк тепĕр чух аптăрасах каятăн: тен, чăваш халăхĕ чăннипех те чечекленсех, аталансах пырать? Тен, республика парламенчĕ йышăннă Чĕлхе саккунĕ те, суверенитет декларацийĕ те пурнăça кĕнĕ? Суверенитет сăмаха «сепаратизмпа» синонимланине тата мĕнле ăнланмалла? Ку апла маррине пурте чухлатпăр, çав хушăрах харпăрлăха Раççей саккунĕсемпе килĕшӳллĕн уйăрнинче те хăш-пĕрисем сепаратизм курма хăтланаççĕ.

Чăваш наци конгресĕн резолюцийĕсене курттăммăн сивлени, ревизилеме хăтланни, паллах, пĕртте савăнтармасть. Оппонентсем Конгресс резолюцийĕ парламент йышăннă закон е постановлени маррине пĕлмелле пек ĕнтĕ. Çук вĕт – текстран пĕр сыпăк татса илеççĕ те «националистсемпе сепаратистсене» тăрă шыв çине кăларма пуçлаççĕ. Аван мар, ытла та аван мар. Кунашкал «дискусси» влаçпа ЧНК хушшинчи, чăваш халăхĕпе ытти нацисем хушшинчи хутшăнусене пăсать.

Хăшĕ-пĕрисем «измсен» йӳтĕмĕпе Чăваш Республикин Президенчĕн суйлавне темле пулсан та ирттерес мар теççĕ пулмалла. Паллах, суйлав ыйтăвне çитес сессире татса параççех. Анчах Президент суйлавне Атнер Хусанкай ячĕпе кăна çыхăнтарни каллех – провокаци шăршиллĕ. Президент саккунне Хусанкай мар, парламент йышăннă. Саккуна вара пурнăçламаллах. Хăй йышăннă саккуна парламент пăрахăçлани (политика партийĕсемпе юхăмĕсенчен хăшĕ-пĕри çак тĕллевпе ĕçлеççĕ) е сунтăхра усă курмасăр тытса усрани парламента хăйсене х чыс тумасть. Пĕр саккун пурнăçланмасан, тепри ĕçлемесен, виççĕмĕшне çине-çинех улăштарсан, тăваттăмĕшне вуçех пăрахăçласан çĕнĕ Конституци йышăнасси те, демократиллĕ право патшалăхĕ тăватпăр тени те паянхи ахăр самана тăвăлĕнче çухалма пултарать.

Ман шутпа, Чăваш наци конгресĕн Кĕçĕн Канашĕ (Мăн Канаша пухма кăткăсрах) вăраха ямасăр пухăнни ытлашши мар. Аслă Пуху хыççăнхи дискусси (демагоги ытлашши пулсан та çак сăмахпах усă курар), Конгресс резолюцийĕсен шăпи чăваш халăхне кăна мар, ытти халăхсене те пырса тивет.

***

Тавлашу е дискусси культури пирки тахçантанпах калаçатпăр. Шел, цивилизациленме васкамастпăр-ха. Тахçанхи меслетсен витĕмĕ е сăнчăрĕ (тахçан Юхма Мишши «тяжелы вчерашние вериги» тени тĕп-тĕрĕс иккен) вĕçертмест пулмалла. Сăмах май, «Хыпар» почтинче те урăм-сурăм ятлав-питлевлĕ çырусем сахал мар. Пирĕн шутпа, вĕсен авторĕсем çак çырусем мĕншĕн пичетленменнине ăнланма тивĕçлĕ. Таса мар пĕр ĕне пĕтĕм кĕтĕве варалать тенине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Пирĕншĕн вара «Хыпар» ят-сумĕ, кунтан та ытларах, куллен 73 пин экз. илсе вулакан темиçе çĕр пин чăвашăн таса ячĕ хаклă. Мĕншĕн тесен, куратпăр ĕнтĕ, хăш-пĕрисем (хăйсем чăвашне куллен аса илтерсех тăраççĕ пулсан та) пĕтĕм халăха «националист-экстремист» ярлăкпа яваклама та пултараççĕ. Апла тăк хамăра хисеплемен çынсемпе те сăпайлă-ĕретлĕ пулар. Эпир путсĕр халăх мар. Мĕскĕн те мар.

Алексей ЛЕОНТЬЕВ,

«Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ, Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн членĕ.

*«Хыпар», 3.12.1992, 240 №.*

## НАЦИОНАЛИЗМ?

*Раштавăн 3-мĕшĕсенче РФ Пичетпе информаци министерстви çумĕнчи Пичет тата массăллă информаци ирĕклĕхне хӳтĕлекен патшалăх инспекцийĕн Чăваш регион инспекцийĕн экспертсен канашĕн ларăвĕнче ЧР Прокуратурин «Представленине» пăхса тухрĕç.*

Экспертсен канашĕн ларăвне Чăваш регион инспекцийĕн пуçлăхĕ С. Александров ертсе пычĕ. Унăн ĕçне экспертсемсĕр пуçне ЧР прокурорĕн çумми Г. Михопаркин, ЧР Юстици министерствин специалисчĕ В. Ковалев, ЧР Аслă сучĕн председателĕн çумми А. Шегуров, Хăрушсăрлăх министерствин обществăпа çыхăну тытассишĕн яваплă сотрудникĕ В. Кошкин подполковник, ЧР Шалти ĕçсен министерствин оперативлă пайĕн пуçлăхĕ В. Алексеев полковник, РФ Президенчĕн Чăваш Республикин представительствинче ĕçлекенсем В. Алексеев тата В. Егоров, ЧР Аслă Совечĕн яланхи комиссийĕн председателĕсем, Президиум членĕсем П. Красновпа А. Хусанкай, «Хыпар», «Советская Чувашия», «Чăвашьен», «Молодежка», «Чебоксарские новости» хаçатсен редакторĕсем А. Леонтьев, Н. Максимов, И. Семенов, В. Васильев, О. Резюкова, Чăваш патшалăх телерадиокомпанийĕн председателĕ С. Павлов, ЧР Журналистсен союзĕн яваплă секретарĕ В. Комиссаров, прокуратура представленийĕнче асăннă уйрăм статьясен авторĕсем хутшăнчĕç. Паян эпир экспертсен канашĕн ларăвĕн кĕскетнĕ стенограммине пичетлетпĕр.

Экспертсен канашӗн ларӑвне С. Александров ЧР Прокуратури хӑйӗн ячӗпе янӑ представленине вуласа панипе пуҫларӗ. Ку вӑл инспекцие юлашки вӑхӑтра янӑ тӑватӑ представленирен пӗри.

ПРЕДСТАВЛЕНИЕ об устранении нарушений ст. 4 Закона Российской Федерации «О средствах массовой информации».

Результаты дополнительного изучения продукции средств массовой информации по вопросу межнациональных отношений, проведенного по поручению Верховного Совета Чувашской Республики, прокуратурой совместно с Министерством юстиции, показали, что во втором полугодии т.г. В республике участились случаи, когда отдельные средства массовой информации и авторы, злоупотребляя представленным правом на свободу слова, используют права и свободы для пропаганды национальной нетерпимости.

Особенно часто вопросы межнациональных отношений освещались в период подготовки и проведения Чувашского национального конгресса редакцией газеты «Хыпар».

В частности, 29 августа с.г. гл. редактор газеты «Хыпар» А. Леонтьев в статье «Мы с народом» пишет: «...Чуваш у себя дома порядок должен наводить сам. Заработанным богатством тоже в первую очередь должен пользоваться сам. Вызывает сомнение, что эту цель можно достичь без обретения суверенитета республики. Значит, чувашский народ должен объединиться вокруг этой мысли».

Другой автор, Михаил Сунтал, 1 сентября т.г. В этой же газете развивает эту мысль в статье «Вектор жизни». «...Русские, татары и десятки других народов своей собственностью распоряжаются по своему усмотрению. Оказывается, только чуваш не способен, будто у него и ума, и силы не хватает делать нужное. Сами собой не сможем жить – говорят те, кто похитрее. Почему так говорят – неизвестно. В первую очередь, конечно, собравшись на Конгрессе, нужно обязать государственных деятелей работать для чуваша...»

Заведующий отделом редакции газеты «Хыпар» И. Иванов, описывая выступления на заседании оргкомитета по проведению Конгресса, в этой же газете 8 сентября т.г. пишет: «...Одно надо понять – в случае не разрешения народной проблемы как это нужно, и в наши места придет гражданская война. Вот идет приватизация, большая часть собственности республики переходит в руки людей некоренной национальности. Это разве когда-нибудь не приведет в койне?»

В таких статьях газеты «Хыпар», как «Надежда – на молодежь» М. Федотова, «Проснемся» И. Александрова, «Не глядите в глаза Москве» Н. Абдулаева, «Чей гнет терпим» Ахметова и других в завуалированной форме пропагандируется исключительность чувашской нации, подчеркивается её зависимость от проживающих на территории республики других народов. В качестве путей возрождения чувашской нации в большинстве публикаций, кроме общих рассуждений, ничего конструктивного не называется, при этом звучат такие призывы, как борьба «до последней капли крови».

Другие печатные издания: газеты «Советская Чувашия», «Чӑвашьен», молодежный еженедельник «МК», «КЛИП», пропагандируя в целом идею интернационализма и дружбы народов, допускают публикации отдельных авторов, провоцирующих возникновение национальной розни.

Характерными примерами позиции националистического направления являются статьи В. Акташева.

К примеру, в статье «Мы чужие и для Прибалтики, и для родной Чувашии» (беседа с И. Степановым – председателем чувашской диаспоры в Латвии), опубликованной в еженедельнике «МК» №28, он пишет, что «...Возрождение любого народа возможно лишь по национальному признаку. Чувашия завоевана Россией. Чуваши должны жениться на чувашках...»

В номере 34 этой же газеты В. Акташев в статье «Станет ли Новочебоксарск вторым Тирасполем?» наводит читателей на мысль о том, что лица коренной национальности в республике находятся в худших условиях, чем приезжие. «Приезжие получили руководящие должности, квалифицированную работу. Рядовые должности, малооплачиваемые остались для направляемых по комсомольским путевкам деревенских чувашских парней и девчат». Продолжая эту тему, автор пишет: «Глава администрации и горсовета – не чуваш. Не потому ли над зданием нет государственного флага ЧР?»

В статье «Незачем стыдиться прошлого», опубликованной 2 октября т.г. В газете «Советская Чувашия», писатель А. Кибеч отмечает: «...Живущие в Чувашии русские – это национал-патриоты, которые не приемлют государственности Чувашии.»

В первом выпуске газеты «Аталану» («Возрождение»), изданной 8 октября с.г. Партией чувашского национального возрождения к открытию Чувашского национального конгресса, опубликовано заявление ОННН, в котором Россия именуется как империя, а её народам предлагается узнать «...реальную историю их насильственного покорения», продолжающегося и в настоящее время. Главный редактор этой газеты Н. Лукианов (председатель Высшего Совета партии ЧАП) в статье «Я хочу иметь свою Родину» пишет: «...Чуваши являются дискриминируемым народом на своей родной земле». А В. Егоров в статье «Неизбежность свободы» заявляет, что «...испытывает физический страх перед русскими».

Распространению вышеперечисленных статей националистического содержания в немалой степени способствовала бездеятельность образованной 17.02.92 г. Чувашской региональной инспекции по защите свободы печати и массовой информации при Министерстве печати и информации Российской Федерации, призванной обеспечить государственный контроль за соблюдением законодательства о средствах массовой информации.

Представленные Положением от 17.03.92 г. полномочия по выявлению правонарушений и пресечению причин и условий, им способствующих, инспекцией не используются. За период своей деятельности начальником Чувашской региональной инспекции не выдано ни одного предписания об устранении нарушений законодательства о средствах массовой информации в соответствующие государственные органы, народные суды не представлен ни один материал о привлечении виновных должностных лиц и граждан к административной или иной ответственности, хотя для этого в отдельных случаях имелось достаточно оснований.

Несмотря на внесенное 23.10. 92 г. представление и требование прокуратуры республики о принятии срочных мер по устранению выявленных в ходе предыдущей проверки нарушений законодательства о средствах массовой информации, предотвращению и пресечению злоупотреблений свободы слова в сфере межнациональных отношений, Чувашской региональной инспекцией действенных мер по усилению государственного контроля за соблюдением Закона о средствах массовой информации не принято, о результатах рассмотрения представления и выборочного анализа продукции средств массовой информации по национальному вопросу в прокуратуру не сообщено.

На основании изложенного, руководствуясь ст. 23 Закона Российской Федерации «О прокуратуре Российской Федерации»,

прошу:

1. Рассмотреть настоящие представления и принять меры по усилению государственного контроля за соблюдением законодательства о средствах массовой информации, особенно в сфере межнациональных отношений.

2. В соответствии с ранее направленным 23.10.92 г. поручением провести анализ продукции, издаваемой редакциями газет «Хыпар», «Чӑвашьен», «Советская Чувашия», «КЛИП», «МК», «Аталану» и других на предмет соответствия содержащихся в них публикаций требованиям ст. 4 Закона Российской Федерации «О средствах массовой информации».

При выявлении правонарушений и злоупотреблений в сфере массовой информации принять конкретные меры по привлечению законом ответственности и искоренению причин и условий, способствующих нарушениям.

3. В дальнейшем систематически анализировать продукцию средств массовой информации, обобщить практику применения законодательства о средствах массовой информации.

Представление подлежит обязательному рассмотрению. Не позднее чем в месячный срок должны быть приняты конкретные меры и о результатах сообщено в прокуратуру Чувашской Республики.

И.о. прокурора Чувашской Республики
ст. советник юстиции В. НИКИФОРОВ.

**С. Александров:** Çак тĕрĕслев пирки манăн А. Хусанкайпа П. Красновран ыйтса пĕлмелли пур – вĕсем иккĕшĕ те яланхи комиссисен председателĕсем, Аслă Совет Президиумĕн членĕсем, П. Краснов – пичет кураторĕ. Мĕншĕн Аслă Совет çавăн пек тĕрĕслев irttерме хушнă?

**А. Хусанкай:** Çакна прокуратурăпа Юстици министерствинчен ыйтмалла: Аслă Совет çавăн пек тĕрĕслев иртерме хăçан тата мĕнле постановленипе хушнă?

**Г. Михопаркин:** Çыру çырса хушни пулман. Тĕрĕслеве Аслă Совет Председателĕ хушнипе иртернĕ.

**А. Хусанкай:** Çакна Аслă Совет ячĕпе тума унăн тивĕçлĕ полномочи çук.

**Г. Михопаркин:** Должноçри çын хăть кама та хушу пама пултарать.

**А. Хусанкай:** Апла тăк справкăра та çаплах çырмаллаччĕ: «Аслă Совет Председателĕ сăмах вĕççĕн хушнипе...» Анчах та, прокурор юлташ, ĕç регламенчĕпе унăн унашкал полномочисем çук.

**С. Александров:** Справкăна хатĕрленĕ чух компетенци çитменни курăнать. Сăмахран, цитатăсене малтан оригинал чĕлхипе памалла, кайран тин – куçарса. Мĕншĕн тесен куçару сĕмĕсем улшăнма пултараççĕ.

**П. Краснов:** Цитатăсем пирки асăрхаттарусем тĕрĕс. Прокуратурăна тĕрĕслеме хушнă пирки. Чăнах та, Аслă Совет, Президиум енчен нимĕнле çырулла хушу та пулман. Аслă Совет Председателĕ – Аслă Совет мар. Прокуратура Аслă Совет Председателĕ умĕнче отчетлă мар, çакна пĕлес пулать.

Ку тĕрĕслеве чӳк уйăхĕнче иртерме Е. Жучков çуллах палăртса хунă. Аслă Совет та кунта хутшăннă тенĕрен, çак тĕрĕслев справкине темшĕн-çке пирĕн комиссие çитермен. Тĕлĕнмелле.

**Г. Михопаркин:** Ман шутпа, Станислав Алексеевич тĕрĕс позицире тăмасть. Эпир тĕрĕслерĕмĕр, пĕтĕмлетрĕмĕр. Çавăн пек сигналсем те пур, пичетленĕ хăш-пĕр япаласем преступленипе юнашар тăраççĕ. Малтан питĕ ансăр вăхăта илнĕччĕ, кайран – анлăрах вăхăта. Юстици министерстви хутшăнман тени тĕрĕс мар – вĕсем икĕ пысăк справка хатĕрлерĕç. Кăтартма пултаратăп – хаçатсенчи статьясен пысăкрах пайне Юстици министерствин специалисчĕсем тĕпченĕ. Çав тишкерĕве вара Юстици министерствипе прокуратурăра ĕçлекенсен мар, регионти инспекцире ĕçлекенсен тумалла. Системăпа. Кашни кун.

**С. Александров:** Инспекци тишкерсех тăрать.

**Г. Михопаркин:** Енчен те эсир çав статьясене асăрхаман пулсан – ку урăх ыйту. Тĕрĕслерĕç те правăна пăснипе чикĕленсех тăракан статьясем чăннипех пур теççĕ. Çав справкăна сӳтсе явма тăратрăмăр та.

Эсир вара прокуратура тĕрĕс мар, ун пек статьясем çук тетĕр. Çук тăк– тавах турра! Енчен те республикăра наци ыйтăвĕпе пурте йĕркеллĕ пулсан сăх сăхнă çеç пулăттăмăр. Анчах...

Акă Юстици министерствин справкинчен илсе кăтартам. Илле Иванов статйинче çапла çырнă: «Пур-и чăвашăн чĕрĕлес туйăмĕ? «Пур» тесе йышăнатпăр тăк – чăннипе чĕртес, ячĕшĕн çеç муталанар мар, пур халăха та хамăр чĕрĕлĕвĕмĕре чăрмантаракан вăйсемпе юлашки юн тумламĕ пĕтиччен çапăçма та хатĕр иккенне уççăн пĕлтерер (ирĕклĕхе мĕскĕнленсе çĕнсе илейместĕн!)». Мĕнле ăнланмалла çакна!

Эсир çапла шутлатăр – йăлтах йĕркеллĕ... Анчах таçта такам «юлашки юн тумламĕччен» тесе калать, ку вăл çын вăлерессИ тесе те шутлама пулать вĕт! Юстици министерствинче тата прокуратурăра ĕçлекенсем канашласа пăхрăмăр та наци ыйтăвĕпе çакăн пек сăмахсемпе калаçма юрамасть тесе хакларăмăр. Ку вăл чăваш халăхĕ çине те мĕлке ӳкерет – чăваш халăхĕ сенĕк йăтса ыранах вырăссене, ирçесене, çармăссене тата ыттисене хирĕç тухма хатĕр пек кăтартать.

**А. Хусанкай:** Ку вăл – сирĕн интерпретаци.

**Г. Михопаркин:** Манăн. Анчах та эпĕ шăпах çапла ăнланатăп.

**С. Александров:** Унта «чăваш чĕрĕлĕвĕшĕн кĕрешмелле» тенĕ, вырăссене хирĕç мар.

**Г. Михопаркин:** «Юлашки юн тумламĕччен!»

**Сасă:** Сывлăх çитнĕ тарăн ĕнтĕ...

**Г. Михопаркин:** Кун пирки Ковалев тĕплĕнрех калĕ – вăл статьясене чылай тишкернĕ тата куçарнă. Тен, эпĕ урăх сăмах каламăп, çавăнпа каласа хăварам. Пĕтĕмпех пĕчĕк пĕрчĕрен пуçланать. Карабахра, Грузире, таджиксем, ытти çĕрте те «юлашки юн тумламĕччен» çапăçаççĕ. Куллен çапла тумлатсан, тумлатсан, тумлатсан, тумлатсан... хăçан та пулин взрыв патне илсе çитерет. Мĕнле калаççĕ-ха: кашни кун «сысна, сысна» тесен çын чăнах та хăртлатма пуçлать теççĕ.

Мĕншĕн тунă-ха çакна эпир? Регионти инспекцие асăрхаттарас тесе. Тимлĕрех пулччăр тесе. Ĕçлеме пуçламалла ĕнтĕ. Сăмахран, çав статьясене эпĕ пичетлемен пулăттăм.

Паллах, наци ыйтăвĕпе критерисем тĕлĕшĕнчен тĕплĕ хатĕрлени çук – право сыхлакан органсен те, ученăйсен те, анчах та вăхăтра асăрхаттармалла. «Российская газета» хаçатра ученăйсен пĕр ушкăнĕ çак ыйтупа ĕçлеме тытăннă тесе пĕлтерчĕç. Вĕсем те çакăн евĕрлĕ шухăшсене вăхăтра чарса лартмалла теççĕ. Хакламалли критерисем çаксем пулма пултараççĕ: пĕр наци çынни тепĕр наци çыннинчен çуралсанах çӳлерех тăнине çирĕплетни – пирĕн ун пек статьясем çук-и вара?

**Сасă:** Мĕнле статьясем?

**Г. Михопаркин:** «Чăваш халăхĕ иккĕмĕш сортлă халăх», «вырăссем яланах вĕсемпе хуçаланаççĕ» тенисем сахал-и? Пĕр халăх тепĕр халăха хирĕç кавар тунă тесе çирĕплетни те наци ыйтăвĕпе преступлени тунине палăртмалли критери пулса тăма пултарать. Пирĕн ун пек шухăшсем çук-ха. Пĕр-пĕр халăх çыннисене пĕр-пĕр сферăран кăларса ямалла тени – тепĕр критери. Пирĕн ку ыйтупа çыраççĕ – пуçлăхсенче пурте вырăссем лараççĕ, чăвашсем дояркăра, механизаторта ĕçлеме çеç тивĕç теççĕ. Подтекстра вырăссене пуçлăх ĕçĕсенчен кăларса ямалла, чăвашсене лартмалла тесе чĕннине курма пулать. Мĕн, çырмаççĕ-им ун пек?

**А. Леонтьев:** «Подтекст» тенипе калаçмалла мар, конкретлă текст кирлĕ.

**Г. Михопаркин:** Енчен те «Чăвашсем, сиксе тăрăр, айтăр вырăссене Чăвашран хăваласа кăларар!» тесе çырнă пулсан эпир çийĕнчех уголовнăй ĕç пуçараттăмăр, çыннине арестлеттĕмĕр.

**А. Хусанкай:** Кĕçтенттин Ивановран пуçлама тивет ĕнтĕ сирĕн.

**Г. Михопаркин:** Пирĕн тĕрĕслеври тĕллев çакă пулчĕ. Регионти инспекцин экспертсен канашне йĕркеленĕ, анчах та прокуратура представленине унта пăхса тухмалла мар ĕнтĕ. Эксперт канашне, положенипе килĕшӳллĕн, конфликтлă лару-тăрăва пăхса тухма çеç тумалла, вăл, ман шутпа, тăтăш ĕçлекенскер пулмалла мар. Представление Александров ячĕпе янă, ăна унăн пăхса тухса мерăсем йышăнмалла.

Кунта редакторсем пухăнни аван. Тимлĕ пулмалла, закона хирĕçле статьясем пичетлемелле мар, редакторсен ун пек право пур. Регионти инспекцин те пĕрле ĕçлемелле. Пире пичет ĕçне контроллесе тăма хушман.

**А. Белов:** Калăр-ха, тархасшăн, ăнланаймарăм: ку тĕрĕслеве Аслă Совет Председателĕ хушнипе е планпа иртернĕ? Нумаях пулмасть хула прокуратуринче ĕçлекен çын çавăн пек тĕрĕслев иртерме Раççей

прокуратуринчен хушнине пĕлтерчĕ. Хула прокуратурине хушу килнĕ, республика прокуратурине килмен-и вара?

**Г. Михопаркин:** Планпа тĕрĕсленĕ, представлени тăратнă.

**П. Краснов:** Тĕрĕсех калатăр – пĕрле ĕçлемелле. Анчах та эсир хăвăр тивĕçĕре инспекцин çине тиесшĕн пек туйăнать. Уголовнăй ĕçе эсир хăвăр та пуçарма пултаратăр вĕт.

**Г. Михопаркин:** Прокуратура сăнаса тăрать (надзор). Халĕ планпа пăхса тухрăмăр, ку ыйту патне тепĕр виçĕ уйăхран таврăнма пултаратпăр. Регионти инспекцин вара пичете патшалăх енчен куллен контроллесе тăмалла, вăл – ĕç тăвакан орган. Министерствăсем, ведомствăсем, ĕç тăвакан органсем законсене пăхăнса ĕçлеççĕ, прокуратура вара вĕсем закона епле пăхăннине сăнаса тăрать.

**П. Краснов:** Сирĕн питĕ тĕрĕс шухăшăра тăсса çапла каламалла. Пичет министерстви – ĕç тăвакан орган, инспекцин – министерство çумĕнче ĕçлекенскер, апла тăк вăл та ĕç тăвакан орган. Ĕç тăвакан органсен вара контроль функцийĕ çук.

**Г. Михопаркин**: Пичет çинчен калакан законрах инспекцин ырăнĕ пирки каланă, çав закона пăхăнса ĕçлемелле. Контроллесси – вĕсен тивĕçĕ.

**С. Александров:** Статьясене эпир те вулатпăр. Чукмарпа пуçран тÿнклеттерменни – эпир статьясене вуламаннине пĕлтермест.

**Г. Михопаркин:** Статьясене вуламастăр теместпĕр.

**С. Александров:** Акă, Е. Жучков радиопа нумаях пулмасть çеç калаçрĕ, национализм ыйтăвĕ çапла çивĕч тăманнине палăртрĕ. Эсир пачах урăхла çирĕплететĕр. Ку ыйтура, çапах та, прокуратура позицийĕ еплерех?

**Г. Михопаркин:** Эпĕ те çаплах калатăп. Наци ыйтăвĕ вăл – хирĕçме пуçласан çеç мар, армянсемпе азербайджансем пек. Анчах та çакăн пек статьясене куллен хамăр граждансен пуç мимине тумлатсан çавăн патне илсе çитерме пултаратпăр.

**С. Александров:** Анчах эсир инспекцие тĕрлĕ хаçатсемпе авторсене суда пама сĕнетĕр вĕт.

**А. Леонтьев:** Георгий Афанасьевич, Сирĕн çак справкăсем миçе вариантлă? Сăмахран, ку вариантра «юлашки юн тумламĕсем» пирки çырни çук. Тата тепĕр ыйту. Статья «национализмлă» е çак «измсăр» иккенне туртса кăларнă пĕр-пĕр цитатăпа е «подтекстпа» хаклама пулать-и?

**Г. Михопаркин:** Акă Юстици министерстви «Хыпар» хаçат пирки хатĕрленĕ справка. Алă пусаканĕ Воронов – тĕп специалист. Вăл çапла каланă: «Илле Иванов чăваш нацийĕ пирки шухăшласа çапла çырать: «Пур-и чăвашăн чĕрĕлес туйăмĕ? «Пур» тесе йышăнатпăр тăк – чăннипех чĕртес, пур халăха та хамăр чĕрĕлĕвĕмĕре чăрмантаракан вăйсемпе юлашки юн тумламĕ пĕтиччен çапăçма та хатĕр иккенне уççăн пĕлтерет (ирĕклĕхе мĕскĕнленсе çĕнсе илеймĕн!)».

**А. Леонтьев:** Çак уйрăм цитатăпа пĕтĕм статьяна хаклама пулать-и вара? Тен, эксперт канашĕ валли пĕтĕм статьяна илсе кăтартмалла пулнă?

**И. Иванов:** Статья авторĕ пулнă май манăн та ыйту пур. Георгий Афанасьевич, эпĕ хам уйрăм çын – гражданин пек – хамăн чысăма тата пурнăçăма закон тата право ирĕк панипе юлашки юн тумламĕ юлмиччен хÿтĕлеме пултаратăп-и?

**Г. Михопаркин:** Мĕне хÿтĕлеме?

**И. Иванов:** Чысăма, пурнăçăма.

**Г. Михопаркин:** Тархасшăн, хÿтĕлĕр.

**И. Иванов:** Анчах мĕншĕн, чăваш пулнă май, хамăн наци чысне тата мăнаçлăхне юлашки юн тумламĕ юлмиччен хÿтĕлеме ирĕк çук?

**Г. Михопаркин:** Анчах халăха «юлашки юн тумламĕ юлмиччен» хÿтĕленме чĕнсе каламалла мар.

**И. Иванов:** Эпĕ чăваш халăхне ырăс халăхĕн юнне юлашки тумламĕ юлмиччен сăхса илме йыхăрман, эпĕ чăваш халăхне хăйĕн наци чысне юлашки юн тумламĕ юлмиччен хÿтĕлеме чĕнсе каланă.

**С. Александров:** Калаçу конкретлă мар, уйрăм статьясем пирки калаçар-ха. «Советская Чувашия» хаçатран пуçлар, унта А. Кибеч статйи пысăкăх мар.

**А. Белов:** «Советская Чувашия» хаçат редакторĕн çумми: Ик-виç самант çеç. Прокуратурăра ĕçлекенсем справкăна питĕ тирпейсĕр хатĕрлени куç кĕрет. Сăмахран, илсе кăтартнă цитата А. Кибеч статйинче çук, икĕ хут вуласа тухса та тупаймарăм. Иккĕмĕшĕнчен, пирĕн тавлашу вĕççĕр-хĕрсĕр пыма пултарать, мĕншĕн тесен нацисене хирĕçме хĕтĕртни шутне мĕн кĕнине палăртмалли критерисем çук. Эпĕ паян «Хыпар» хаçатра Илья Иванов ăнăçлă пичетленĕ статьяна асăнасшăн, вăл унта Уголовнăй кодексран 74-мĕш статьяна вырăслах илсе кăтартать. Çавăнта каланă пек – пĕр наци е расăна тепринчен çÿлерех лартма чĕнсе калани пулсан, паллах, шута илмелле. Эпĕ «Хыпар» хаçатри статьясене, чăвашла пĕлменнипе, хак параймастăп, анчах та, пĕтĕмĕшле илсен, çак ыйту пур.

Паян прокуратура тăратнă сĕнÿсем тĕрĕс, регионти инспекцин статьясем пирки тимлĕрех пулмалла. Нумаях пулмасть телевиденипе тÿрĕ передача пулчĕ, унта Конгресс çыннисенчен пĕри мана – Белова – наци ыйтăвĕпе провокаци тăвать тесе хакларĕ. Провокаци – уголовнăй майпа явап тыттармалли япала, мана уççăн айăпларĕç, анчах çакна инспекцин асăрхамарĕ. Эпĕ «Советская Чувашия» хаçата килекен пур çырăва та кăтартма пултаратăп, вĕсенчен 90 процентĕнче каланă шухăшсем кама та пулин килĕшменнишĕн эпир айăплă мар.

**С. Александров:** Апла тăк А. Кибеч статйинче асăннă цитата çук, ăна «Советская Чувашия» хаçатра национализм тупас тĕллевпе прокуратурăра шутласа кăларнă темелле-ши? Малалла «Хыпарти» статьясем çине куçар.

**А. Леонтьев:** Эпĕ илсе кăтартнă цитатăсем пирки çеç калаçасшăн. Вырăсла çеç пĕлекенсенчен каçару ыйтатăп, чăвашла статьясене, паллă сăлтавсене пула, вырăсла тишкерни вырăнлах мар-тăр.

«Эпир халăхпа» статьяра сăмах мĕн çинчен пырать? Статьяна «Хыпар» çĕнĕрен тухма пуçланăранпа çулталăк çитнĕ ятпа çырнă. Тĕрĕслекенсене, представлени çыракансене мĕнле сăмахсем килĕшмен-ха? Чăвашла вуласа паратăп: «Çавăнпа та пĕр Мускава кăна шанса пурăнни çителĕксĕр. Чăвашăн хăйĕн килĕнче хăйĕн йĕрке тумалла, ĕçлесе илекен тупăшпа чи малтан хăйĕн усă курмалла. Çак тĕллеве вара республикăн чăн-чăн суверенитетне туса хумасăр пурнăça кĕртесси иккĕлентерет. Апла тăк чăваш халăхĕн çак шухăш тавра чăмăртанмалла». Представлени авторне çак сăмахсем килĕшмен, унта вăл национализм тупасшăн.

Мĕнле хакламалла-ха çак сăмахсене? Халĕ регионализаци, суверенизаци пырать, крайсен, облаççен прависене чылай ÿстереççĕ. Мускавăн официаллă политики те çакна ырлать. Çавăнпа та представлени авторĕн шухăшне тĕпренех хирĕçлетĕп. Кунта хăть «подтекст», хăть вунă «подтекст» шырăр, пытарса хăварнă темле хăрушă шухăш шыраса тупаймастăн.

Сăмах – ансат чăнлăхсем пирки. ЧР суверенитечĕн Декларацине йышăннă, анчах икĕ çул иртсе кайрĕ – Деклараци хут çинче çеç-ха. Паллах, çак шухăша автор малалла аталантарнă тăк статьяра прокуратурăшăн татах та «национализмлăрах» япаласем пулма пултаратчĕç. Кунта вĕсем çук. Кунта – констатаци çеç. Эпир хальлĕхе чăнах та Мускав куçĕнчен, центр куçĕнчен пăхатпăр-çке. Эпир кăна мар – Чулхула та, Ярославль те, Приморье те, ытти облаçсемпе крайсем те, республикăсем те. Хальлĕхе хамăр патăмăрта йĕрке тума васкамастпăр, ĕлĕкхиллех Мускава çеç шанатпăр. Раççей облаçĕсен губернаторĕсем вара çак ыйтăва пиртен те ытларах, çивĕчрех çĕклеççĕ. Калăпăр, Чулхула облаçĕ. Анчах вĕсене никам та «националист», «сепаратист» тесе айăпламасть.

Ку цитата пирки урăх калаçмалли çук тетĕп.

Тепĕр статья авторĕ Михаил Сунтал – Михаил Павлович Желтов, Чăвашрадио редакторĕ, – кунтах, çавăнпа хăйсене сăмах пани вырăнлăрах.

**М. Сунтал:** Эпĕ статьяна мĕн шутласа çырнă-ха? Кашни хăйĕн вăйĕпе пурăнмалла. Çын пурлăхне мĕншĕн туртса илмелле? Çын ĕнси çине мĕншĕн хăпарса лармалла? Халь пирĕн çапла калаççĕ: «Эпир хамăр

тĕллĕн пурăнаймастпăр!» Апла тăк такам ĕнси çинче ларасшăн! Шăпах вĕсем урăх çын япалине ярса илесшĕн. Эпĕ çапла ăнланатăп. Ман шутпа, эпир никам пурлăхне те тытса илесшĕн мар. Никам çине те тапăнасшăн мар. Хамăр тĕллĕн, йĕркеллĕ пурăнма вара тивĕçлĕ.

**А. Леонтьев:** Тепĕр статья. «Йĕркелӳ комитечĕ, аврал?» ятлă. Ăна наци хутшăнăвĕсен пайĕн редакторĕ И. Иванов Чăваш наци конгресĕн йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнчен хатĕрленĕ. Мĕн курăнать-ха кунта? Каллех прокуратура вĕçне çитиччен тĕрĕслемен. Илсе кăтартнă сăмахсене – «Акă приватизаци пырать, республика пурлăхĕн пысăк пайĕ кунти тĕп халăх мар çынсен аллине куçать. Çакă хăçан та пулин вăрçă патне илсе пымасть-им? Апла ан пултăр тесен республикăра 68 процент пурăнакан чăваш халăхне экономика, пурлăх тĕлĕшĕнчен хӳтĕлемелли майсем палăртмалла» – [СССР халăх депутачĕ] Аркадий Павлович Айдак йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче каланă, ăна И. Иванов шухăшласа кăларман. Прокуратурăпа Юстици министерствин тĕрĕсленĕ чухне çакна шута илмеллех пулнă.

Малалла тишкерӳçĕсем курттăммăн кайнă. «Шанчăк – çамрăксенче» статья авторĕ – эпир пурте хисеплекен Михаил Романович Федотов академик. Ун хыççăн М. Александровăн «Вăранăр!» ятлă çырăвĕ. Нурали Абдулаев азербайджан интервью панă. Кайран Ахмеева (справкăра Ахмеев тенĕ) çырăвĕ. Сăмах май, вăл чăваш мар, ирçепе тутар хĕрĕ. Цитатăсене илсе кăтартман та, – эпĕ вĕсем пирки ытлашши калаçасшăн мар.

Кунта – Конгресс умĕн пынă дискусси. Ытти хаçатсенче те пынă вăл.

Эпир пурте çĕр çинче пурăнатпăр, Чăваш наци конгресне мĕн тĕллевпе ирттернине пурте питĕ лайăх пĕлетпĕр. Ăна эпир чăваш халăхĕ чечекленсе пырать тесе ирттермен. «Эпир хальлĕхе мĕншĕн япăх пурăнатпăр?» тесе ирттернĕ. Пирĕн нумай-нумай çитменлĕх мĕншĕн пулнине кăтартса парас, вĕсене пĕтерес тĕллевпе. Пирĕн чĕлхе мĕншĕн хальлĕхе çителĕксĕр аталанать? Шупашкарта мĕншĕн пĕр чăваш шкулĕ те çук? Тепĕр ыйту – эпир халĕччен йышăннă законсем, сăмахран, Чĕлхесем çинчен йышăннă закон мĕншĕн пурнăçланса пымасть? Çакăншăн хăшĕ-пĕри Аслă Советăн наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссине айăплать. Ку пачах та тĕрĕс мар тесе шутлатăп. Ĕç тăвакан органсем çав закона вăя кĕртме çине тăраççĕ-и? Шел, çук-ха.

Паллах, национализм шырасси – питĕ ансат мел. Унăн меслечĕсем – «националистсене» тупса палăртмалли меслетсем – 30-мĕш çулсенченех килеççĕ. Çав çулсенче миçе пин «националиста» тĕп тунă, тĕрмере çĕртнĕ, вăлерсе пĕтернĕ, миçе пин интеллигента ĕçлеме паман. Пĕлтĕр, кăçал хисеплĕ прокурорсем çав çынсен таса ятне тавăрса панă. Хăвăр та çакна йышăнатăр. Енчен те малашне те çав меслетпех усă курасшăн пулсан, сире шухăшласа пăхма сĕнесшĕн – сирĕн ĕçе тепĕр 10–15 çултан мĕнлерех хаклĕç?

«Хыпарта» тепĕр чух, ахăртнех, туйăм шайĕнче çырни тĕл пулать. Паллах, çакна журналистсем пĕлеççĕ, эсир те ăнланăр, хисеплĕ юристсем, «Советская Чувашия» хаçатра, пурне те ăнланмалли сăлтава пула (унта вырăссем çыраççĕ, ăна хула чăвашĕ вулать – хула чăвашĕ вăл вырăсланса кайнă тесен те тĕрĕс ĕнтĕ... Вĕсем вырăсла вулаççĕ, чăвашла хаçат-журнал çырăнса илмеççĕ), Чăваш наци конгресне хирĕçле япаласем тухаççĕ, мĕншĕн тесен çыннăн шухăшлав шайĕ çавăн пек. Эпĕ вĕсене айăпламастăп, ятламастăп. Мĕн тăвăн – пурнăç çавăн пек пулнă пирĕн, хăй вăхăтĕнче халăха тăван чĕлхерен вăйпа пистернĕ, чăн историе вĕрентмен. Чăваш хаçатне вара – «Хыпара» – пĕтĕмпех чăваш халăхĕ вулать, ăна вырăс вуламасть! Чăваш çынни, «Хыпар» вулаканĕ хăй халăхне хирĕç кулса-йĕкĕлтесе çыраймасть ĕнтĕ – вăл чун ыратнине çырать, халăх ыратăвне кăтартать. Кулленхи пурнăçра ăна мĕн инкек кăтартать – çавна çырать. Паллах, «Хыпар» почтинче те йĕркесĕр япаласем, вăрçă вăрçма чĕнекен çырусем пулкалаççĕ. Эпир вĕсенениепле те пичетлеме пултараймастпăр. Хаçат ĕçне цитатăсемпе çеç хаклани – ытла та çăмăл çул. Çулталăк тăршшĕпе тухса пынă статьясене туллин вуламалла. Е – уйрăм статьяна. Виçсе-тишкерсе. Цитатăна çеç мар. Вăл е ку статья авторĕ хăйĕн шухăшне сăлтавлама вунă тĕслĕх илсе кăтартĕ, эсир вара пĕр тĕслĕх туртса кăларса тулли пĕтĕмлетӳ тăвасшăн.

Акă Нурали Абдулаев – пирĕн корреспондента интервью панă 13 çынран пĕри çеç. Эсир вара пĕрин шухăшне хаклатăр, ыттисене – асăрхамастăр. Ыттисем çав тери лайăх шухăшсем калаççĕ. Сăмахран, Павлов: «Мана чăваш халăхĕн историне уçса паракан тĕплĕ, тарăн шухăшлавлă çыру ĕçĕ çукки пăшăрхантарать». Конкретлă ыйту. Çивĕч ыйту. Чуна ыраттаракан ыйту. Чăваш халăхĕн тĕрĕс историне халĕ те çырманни мана та кулянтарать.

Е çак пĕчĕк интервьюсен ярăмĕнчи виçĕ вырăс ачи: «Эпир пĕри те чăваш мар, апла пулин те хăлха хĕррипе Конгресс пуласси пирки илтнĕ... Анчах та эпир, вырăс ачисем, нихăçан та чăваш чĕлхине вĕренессине хирĕç пулман. Чăнах та, эсир хăвăр патшалăхра тăван чĕлхепе калаçма хăратăр, пирĕн чĕлхепе (вырăс чĕлхипе) хутшăнатăр тăк, мĕншĕн сире чăваш чĕлхи кирлĕ?» Пире намăслантараççĕ. Çакна корреспондент шухăшласа кăларман.

Тепĕр шухăш: «Енчен те наци конгресĕ чăвашсене пĕрлештерет, пĕрпĕрипе хирĕçнине пĕтерет пулсассăн, вăл хăй тивĕçне пурнăçлать тесе шутлатăп». Тепри калать: «Пур халăхсем те туслă пурăнччăр». Апла тăк кунта тĕрлĕ шухăш, тĕрлĕ çын, Нурали Абдулаев каланине те корреспондент туртса пăрахайман ĕнтĕ: «Анчах та эсир хăвăр пирки, чăваш пирки çирĕп тăрасса иккĕленетĕп. Кам эсир? Тĕрĕссипе каласан, тарçă. Эпир те тарçă пулнă. Анчах та хăтăлатпăр çав туртăмран. Сирĕн вара пурте лăпкă. Мускав çаврĕнчен пăхса нимех те кĕтсе илейместĕр». Мĕн каламалла? Çын çавăн пек шухăшлать-çке. Кунта «Айтăр, чăвашсем, сенĕк йăтса вырăссене хирĕç тухар!» текен чĕнӳ çукки куç кĕретех.

Чăвашра самана лăпкă. Шĕкĕр турра. Вырăссемпе те, тутарсемпе те, ыттисемпе те хирĕçместпĕр. Наци конгресĕ иртсе кайрĕ – самана пур пĕрех лăпкă. Яланах çапла пултăрччĕ. Уншăн, ман шутпа, сирĕн хăвăра çеç мар – прокуратурăра, Хăрушсăрлăх министерствинче ĕçлекенсене çеç мар, хаçатра ĕçлекенсене те тав тумалла. Çук «национализма» шырани вара, ăнланăр, тархасшăн, йĕркеллĕ ĕç-пуç патне илсе пымасть.

**В. Ковалев:** Хисеплĕ юлташсем! Кунта темле диссертаци сӳтсе явасси е темле ăслăлăх тавлашăвĕ пирки сăмах пымасть. Кун çинчен мар. Мĕн, эсир Чăвашран Балтика тăрăхĕ туса хурасшăн-и?! Карабах?! Нумай юлмарĕ вĕт! Нумай юлмарĕ вĕт!

**А. Хусанкай:** Асăрханарах калаçăр.

**В. Ковалев:** Эсир хăвăр асăрханулăрах пулăр!

**С. Александров:** Хăвăр шухăшăра никĕслесе кăтартăр.

**В. Ковалев:** Никĕслетĕп! Çавăнтан пуçланнă та – «эстонсен, латышсен нимĕнле правасем те çук!» Ельцинăн ООНа чĕнсе калама тиврĕ – çынсен прависене хӳтĕлес тесе!

**А. Хусанкай:** Айтăр кунта Балти тăрăхĕнчи ыйтусене сӳтсе явмастпăр, ку пирĕн компетенци мар.

**В. Ковалев:** Эсир те çапла тăвасшăн! Эпĕ мĕн илтни, хаçатсенче мĕн çырса кăларни çавăн патне илсе пырать!

**А. Леонтьев:** Конкретлă статьясем илсе кăтартăр.

**А. Хусанкай:** Кун йĕркинчи ыйтуран пăрăнас марччĕ.

**П. Краснов:** Айтăр юрист чĕлхипе калаçар.

**В. Ковалев:** Юридици енчен пăхсан, шел те, представленире малалла мĕнле пулмаллине кăтартнă. Анчах та ĕçĕ кунта мар. Прокуратура шутласа пăхма, тӳрленме ыйтать – нацисем хушшинчи уйрăмлăхсене амалантарни кĕç-вĕç «Вĕлер!» тесе чĕнесси патнех çитерет. Мĕн, çакна тăвасшăн-и? Паян «Вырăса вăлер!» тенисĕр пуçне «статйи пĕтĕмĕшле илсен аванскер» тени çителĕксĕр! Ĕç унта мар вĕт! Ун вырăнне «прокуратура ма тĕрĕсленĕ, кам хушнă»? Краснов, Хусанкай хушман – çавна тĕпчеме пуçларăмăр. Эсир обществăлла пĕрлешӳсем çинчен йышăннă закон вĕсем мĕн ĕçленипе кăсăкланма ирĕк парать...

**П. Краснов:** Айтăр-ха кун йĕркипе калаçар.

**С. Александров:** Цитатăсем илсе калаçăр, тархасшăн, анчах та – кун йĕркипе.

**В. Ковалев:** Инспекцин идеологие мар, саккуна тĕпе хурса ĕçлемелле! Саккун вара нацисем хушшинчи хирĕçÿсене хĕтĕртес еннелле сулăннисене асăрхаттарма ыйтать. Малалла кун пек кайма çук!

**А. Леонтьев:** Ăçта кайма?

**В. Ковалев:** Тĕслĕхсем çителĕклех! Çителĕклех!

**Сасă:** Конкретлă каласан?

**В. Ковалев:** Конкретлă... Сÿтĕ-яву пачах урăх еннелле каять. Кунта мĕншĕн килнĕ эпир?

**С. Александров:** Эпир çав конкретлă статьясене экспертиза тăватпăр та. Мĕнле ыйтусем пур – калаçăр.

**В. Ковалев:** Эпир представлени патăмăр – эсир пире чĕркуççи çине лартатăр!

**С. Александров:** Енчен те эсир халь çав статьясенчи преступлени составĕ пур тесе ĕнентерме пултаратăр тăк...

**В. Ковалев:** Каллех преступлени! Преступлени пулсан тахçанах тĕрмере ларатчĕç!

**С. Александров:** Енчен те саккуна пăсни пур пулсан...

**В. Ковалев:** Акă ман кÿршĕ хаçат тытса ларать. «Ведь только русские и так называемые русскоязычные в Чувашском государстве имеют на сегодняшний день все условия и возможности в удовлетворении своих потребностей в духовной и социально-политической сферах: воспитываться и получать образование, вплоть до высшего...» тата ытти те, тата ытти те. Урăх никамăн та право çук – вырăссен çеç!

Çав вăхăтрах чăвашсем хăйсем, вĕсен уйрăм патшалăхĕ пур пулин те, темле пусмăр тÿсекенсем иккен. Кам дискриминацилет вĕсене? Ак эпĕ 40 çул пурăнатăп кунта...

**И. Иванов**: Шăпах Юстици министерствин чăвашсене кам тата мĕнле дискриминациленине тупса палăртмалла та ĕнтĕ. Мĕншĕн тупса палăртмастăр?

**В. Ковалев:** Мĕн тупса палăртмалли пур кунта?

**П. Краснов:** Эсир вырăссемпе вырăс чĕлхеллисен çеç пĕлÿ илме тата ытти май пур тенине хирĕçлетĕр. Анчах çакă тĕрĕсех-çке. Чăваш чĕлхине вĕренме, чăваш чĕлхипе пĕлÿ илме майсем çителĕксĕр. Анчах çакăн пек юрамасть-çке. Чăвашла пĕлÿ илме те çук!

**В. Ковалев:** Мĕн, унччен чăвашла хаçат тухман-им?

**Г. Михопаркин:** Халь ман ачасем те чăвашла вĕренеççĕ – кĕнеке çитмест. Мĕн, вырăссем айăплă-им çакăншăн? Чăваш издательстви пур! Икĕ академи мĕншĕн туса хунă?

**В. Ковалев:** Тăхтăр-ха эсир . . . «Пирĕн халăх йывăр ĕçе ĕçлет, килсе тулнă вырăссем ăшă пÿлĕмсенче лараççĕ...» Акă вăл – тĕслĕх. Çĕнĕ Шупашкар администрацийĕн пуçлăхĕн çумми «ăслаcа çитернĕ» – суйлав вăхăтĕнче квотăн 70 процентĕ чăвашсене, 30-шĕ – ыттисене. Юрать, эпĕ акă хутăш округра пурăнатăп, чăваша депутата тăрататăп, ман вара вырăса тăратмаллаччĕ – мĕн пулса тухать? Шутлаççĕ-и, çук-и?

**С. Александров:** Айтăр авторсене итлер.

**В. Ковалев:** Çакăн пек каланисем çителĕклех, çителĕклех!

**Н. Лукианов:** Кунта правăна сыхлакан органсем лару-тăрăва хитрелетсе кăтартни курăнать. Ман шутпа, республикăра нацисен хутшăнăвĕсен ыйтăвĕ калама çук çивĕч. Ку ыйтăва тоталитаризм системипе коммунистла режим çитĕнтернĕ. Çакна хирĕçлекенсем çук пуль тетĕп. Эпĕ, ЧАП пуçĕ пулнă май, çапла шутлатăп: çав ыйтăва май килнĕ тарăн мирлĕ майпа татса памалла.

Хамăн статья пирки те хурав паратăп. Тепĕр хут калатăп: çапла, вырăссем тата вырăс чĕлхине куçнисем çеç паян пĕлÿ илме чунпа ăс-хакăл, социаллă пурнăçпа политика ыйтăвĕсене тивĕçтерме тулли майсемлĕ...

**В.Ковалев:** Мĕн, саккунра çапла çырнă-и?

**Н. Лукианов:** ...ачаран пуçласа аслă пĕлÿ илесси таранах.

**В. Ковалев:** Тепĕр хут ыйтатăп, саккунра çапла-им?!

**Н. Лукианов:** Пурнăç условийĕсем çапла...

**В. Ковалев:** Ăçта çырса хунă çапла, калăр-ха мана! «Пурнăç условийĕсем...»

**Н. Лукианов:** Тепĕр хут калатăп – патшалăх влаçĕпе управлени органĕсенче ĕçлеме те, культурăпа эстетика ыйтăвĕсене тивĕçтерме те вырăссемпе вырăс чĕлхине куçнисем валли май ытларах туса панă.

Çав вăхăтрах чăвашсем, наци патшалăхĕ пур пек пулин те, хăйсен тăван çĕрĕ çинче те дискриминаци тÿсекен халăх пулса юлаççĕ.

Пĕр тĕслĕх çеç. Эпĕ Юстици министерствине ЧАП уставне регистрацилеме чăвашла текст илсе кайрăм. Вырăсли те кирлĕ терĕç те кăларса ячĕç. Кайран вырăсла устав çеç илсе кайрăм – никам та чăвашла устав кирлĕ темерĕ. Мĕн, пирĕн вырăс патшалăхĕ-и е чăваш патшалăхĕ-и?

Малалла...

**В. Ковалев:** Вы сдали, на третий день вам выдали свидетельство. Брехать-то можно что угодно, вы верите этому?

**Н. Лукианов:** Ачана ача садне илсе çитертĕн – унта вырăсла çеç вĕрентеççĕ...

**В. Ковалев:** Юстици министерстви кăтарту паманнипе-и?

**Н. Лукианов:** Юстици министерстви пирки мар. Çакăн пек ыйту пур, хамăн статьяра мĕн çырнине эпĕ çавăнпа каялла илместĕп. Прокуратурăн вара чи малтанах хăйĕн тивĕçĕсемпе ĕçлемелле. Чăваш Республикин Чĕлхесем çинчен калакан законĕ пур, прокуратурăн чи малтанах çав закон пурнăçа епле кĕнине сăнаса тăмалла. Шăпах çав закона пурнăçа кĕртменни нацисен хирĕçĕвĕсем патне илсе пырать. Эпир туслăхшăн, анчах та аслă пиччепе кĕçĕн шăллĕ пек мар, тан туслăхшăн...

**С. Павлов:** Прокуратура, ман шутпа, законсене хÿтĕлекен орган, çав шутра Пичет çинчен калакан закона хÿтĕлекенни те. Уйрăм цитатăсене илсе шухăша малалла аталантарни тĕрĕс мар, ман шутпа, законпа шайлаштарса «çапла» е «çук» тени тĕрĕсрех. Наци ыйтăвĕсене официаллă структурăсем тĕплĕ тишкермеççĕ, çапла вăр-вар хак параççĕ те хаçатсенче национализм пур тесе официаллă хыпар сараççĕ – ку тĕрĕс мар. Çак ыйтусем пур, паян вĕсем хаçат страницисене тухрĕç. Мĕн тумалла – уççăн сÿтсе явмалла е кассахĕссе çеç çутатмалла? Уççăн сÿтсе явмасан вĕсем вăрттăн сарăлма тытăнĕç – вăт çавăн чухне национализм çуралĕ.

Тата акă мĕн. Çутнă лампа çимне нумай-нумай пăхса тăрсан куç шарать, шурă ялала та хура курăнакан пулать. «Национализм» та çав лампочка вырăнĕнче паян. Кунта лараканcем пурте националсизм сарăласран пăшăрханаççĕ. Аван ку. Анчах та официаллă органсем национализм пур тесе сăмах сарни аванах мар. Акă Муркаш районĕнче Христос тĕнĕпе чăваш тĕнне ĕненекенсем хушшинче хирĕçÿ сиксе тухнă теççĕ. Кăсăкланма пуçларăм та – ун пекки пулман. Малалла вулатăп – наци отрячĕсем йĕркеленĕ. Кăсăкланатпăр – çук.

Апполинарий атте телевидение чăваш тĕнĕ пирки передача кăларнăшăн ятлать. Хăть чĕнмесĕр юлсан лайăхрах марччĕ-ши?

Çавăн пек пĕтĕслетÿ тăвасшăн эпĕ. Çырмалла е çук? Ман шутпа, çырмалла. Вĕсен пĕлтерĕшĕпе айăпне ниепле те ÿстерсе кăтартма юрамасть. Тепĕр ыйту. Пире прокуратура айăпланă чухне пирĕн мĕнле пулмалла – официаллă орган-çке? Ман шутпа, кунта прокуратура асăрханулăхăрах пулни те кирлĕ.

**А. Хусанкай:** Сирĕн паянхи кунран мар, Кĕçтенттин Ивановран пуçламалла. Петĕр Хусанкай, Митта Ваçлейĕ çырнисене тишкермелле. (Паян çыракансем вĕсен шайне çитеймеççĕ). Вĕсене хирĕç халех ĕç пуçласа ямалла, вĕсене пичетлеме чармалла. Кĕçтенттин Иванов «Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!» тесе çырнă. Çеçпĕле вуласан та айăплав валли тата вирлĕрех сăмахсем тупма пултаратăр. Вĕсене халь пичетлеме чарас пулать. «Национализм» тымарне шăпах çавăнта шырама тытăнмалла сирĕн.

**С. Александров:** Асăннă статьясенче суда памалăх национализм пур-и?

**А. Хусанкай:** Ман шутпа, çук.

**Д. Тимофеев,** Чăваш регион инспекцийĕн пуçлăхĕн çумми: Прокуратура пире ку ыйтусемпе суда пама сĕнет, анчах иск тăратсан прокуратура çав иска çирĕплетĕ-и? Прокуратурăпа пĕрле лупашкана кĕрсе ÿкмĕпĕр-и? Тата наци ыйтăвĕ – питĕ кăткăс ыйту, пăхса тухма судсем хатĕр-и?

Аслă Совет Председателĕ хушнипе прокуратура инспекцие кĕске хушăрах тăвата представлени пачĕ. Тĕллевĕ паллă – Александрова ĕçрен пăрасси, ăна кунти пуçлăхсем мар, Мускаври Пичет министрĕ лартнă-çке-ха.

Пичет инспекцине прокурорăн пĕр пайĕ туса хурасшăн, пирĕн вара хамăр тĕллĕн ĕçлемелле.

**С. Александров:** Халĕ экспертсен канашĕн членĕсене çак ыйтăва сасăласа татса пама, резолюци йышăнма сĕнетĕп.

*Экспертсен канашĕ асăннă статьясенче Раççей Федерацийĕн «Массăллă информаци хатĕрĕсем çинчен» законĕн 4-мĕш статйине пăсни çук тесе палăртрĕ. Чăваш Республикин прокуратурин представленине шута илчĕ.*

*Çак ыйтусем çивĕч тăнине шута илсе, раштавра ЧР Журналистсен союзĕпе пĕрле республикăри журналистсене пухса «Пичет – наци ыйтăвĕ – законлăх» темăпа ăслăлăхпа практика конференцийĕ ирттерме палăртрĕç.*

Пичете Илле ИВАНОВ хатĕрленĕ.
*«Хыпар», 10.12.1992, 245 №.*

### Эхо конгресса
## ДВУЯЗЫЧИЕ НЕ МОЖЕТ БЫТЬ ПОМЕХОЙ

*Как быстро меняются у людей взгляды и убеждения. Давно ли мы называли русский язык языком дружбы и братства народов, восхищались его величием, богатством и красотой. Черпали из него силы для развития своего родного языка. А сегодня многие уже готовы отвернуться от него. Даже спикер парламента Беларуси Станислав Шушкевич заявляет, что сделает все, чтобы не допустить в своей республике государственного двуязычия.*

Не будем, однако, судить уставы чужих монастырей, для нас важнее дела в своем доме, т. е. В нашей республике. Согласно Закону о языках, принятому в октябре 1990 года, государственный статус получили у нас два языка – чувашский и русский (как государственный язык Российской Федерации). Некоторая часть чувашской национальной интеллигенции принятым законом осталась неудовлетворенной. Она и по сей день продолжает настаивать на том, чтобы статус государственности в пределах республики придать только чувашскому языку. Мнение свое ей удалось навязать и Чувашскому национальному конгрессу. Аргумент у этих людей один: в принятом виде Закон о языках не работает, расширение функций чувашского языка в обществе не чувствуется.

Критики Закона о языках, безусловно, в чем-то правы. Действительно, резких перемен в распределении общественных функций между двумя государственными языками за два года не произошло. Но лед, как говорится, тронулся. Отношение людей к чувашскому языку уже изменилось как со стороны самих чувашей, так и нечувашского населения. Чувашская речь шире и свободнее зазвучала как в повседневном обиходе, так и при официальном общении. Выросли объемы передач на чувашском языке на радио и телевидении. Как предмет изучения он введен в учебные планы русских общеобразовательных школ, средних специальных и высших учебных заведений. Говорить в обществе по-чувашски становится престижным.
Небывалый факт: восьмитысячный тираж учебника чувашского языка для русских разошелся в столице республики в считанные дни и даже почти не дошел до районов.

Не все, разумеется, идет гладко. Трудно внедряется, к примеру, язык в официальное делопроизводство. Сказывается прежняя инерция, а также отсутствие канцелярского стиля на чувашском языке. Неудовлетворительно используется чувашский язык в названиях учреждений, предприятий, колхозов, улиц, в дорожных и иных указателях. Сказывается привычное для советских людей отношение к законам вообще: дескать, законов и разного рода постановлений принимается у нас много, но мало кто их выполняет, пройдет время – позабудут и об этом законе.

В то же время критика в адрес Закона о языках во многом голословна, эмоциональна, не учитывает реального положения вещей. Придание чувашскому языку статуса государственности в значительной мере и тогда опережало время, во многих сферах в ту пору он не был готов функционировать, не готов и сегодня. К примеру, согласно статье третьей закона работники органов государственной власти и управления, а также ряда отраслей народного хозяйства (транспорт, связь, торговля, здравоохранение и др.) должны владеть обоими государственными языками. Но на изучение языка требуется время, и немалое. Нужны и соответствующие пособия – учебники, словари, разговорники. А они только еще создаются. Вот почему на реализацию этой статьи законом определен десятилетний срок. А сегодня и этот срок может оказаться нереальным – издание книг стало невероятно дорогим.

Может ли чувашский язык в настоящее время во всех сферах общественной жизни заменить собой русский язык? Иначе говоря, можно ли его провозгласить единственным государственным или официальным языком? Если не впадать в прожектерство и самообман, то утвердительный ответ на этот вопрос невозможен. Но общество ныне неустойчиво. Подогревая одних амбициозными идеями национального возрождения, упрекая других в отсутствии национального достоинства и самосознания, пугая третьих грядущим исчезновением языка и вместе с ним его носителей, можно, пожалуй, провести соответствующий закон и через парламент республики. Но такой закон заранее был бы обречен на чистейшую декларативность, соблюдать его в жизни будет невозможно.

Невозможно ожидать, что чувашский язык станет языком промышленного производства и современной промышленной технологии. Нереально надеяться и на то, что в многонациональных по составу населения городах он станет полноценной заменой русскому языку. Точно также обстоит дело в сфере образования и науки – вряд ли в скором будущем вузы и средние специальные учебные заведения перейдут на обучение по-чувашски. Для этого учебники и все учебные пособия пришлось бы переводить на чувашский язык, для чего нет ни кадровых, ни материально-финансовых возможностей. Многие люди вполне резонно могли бы добавить: и целесообразности.

А коль скоро общим языком для городского населения останется русский, то, вполне естественно, городские внуки будут приезжать к сельским бабушкам с привычным для них русским языком. А уж дело бабушек и дедушек на селе – обучать внуков своему родному языку, а не подлаживаться под язык внуков. Исстари же так было – дети учились языку у взрослых. А коль скоро бабушки и дедушки не говорят с внуками по-чувашски, значит, они и не хотят учить их своему родному языку.

**По-видимому, дело здесь не в государственном языке, а в общественной или даже народной психологии. Люди привыкли считать престижным не свой родной, а только русский язык. Вот и стремились скорее приобщиться к этому языку, а от своего избавлялись, как от ненужного балласта.** Видеть в этом процессе только навязывание официального языка страны со стороны властей или усматривать политику насильственной русификации было бы неверно. Разве государство когда-либо вмешивалось, к примеру, в семейно-брачные отношения? А между тем, по данным социологов, число межэтнических браков в Чувашии к 1979 году составило 12,2 процента, а по стране этот показатель был еще выше – 15 процентов, в городах доходило до 18 процентов. Что же, теперь во имя сохранения языков объявить такие браки

незаконными? Люди, какой бы национальности они ни были, всегда старались жить друг с другом в мире и дружбе. Не были исключением и чуваши. Сталкивали же народы, натравливая их друг на друга, только политики. И всегда прикрывались интересами страны или народа.

Вернемся, однако, снова к нашей теме – языкам. Стремление чувашей овладеть русским языком вполне понятно. Тяга эта диктовалась самой жизнью. Они не могли не видеть, что русский язык открывает им более широкую дорогу в жизни, чем их родной язык, – он обеспечивает возможность общаться с представителями других народов, получать желаемую специальность, приобщаться к ценностям мировой культуры и науки. Даже сегодня многие сельские жители уезжают на сезонные работы в сопредельные области. И как же им обходиться без русского языка? Разве изменится что-нибудь в жизни людей, если мы русский язык перестанем считать государственным? Впрочем, «радетели» родного языка все это понимают не хуже меня. Не случайно они своих детей, как и в старые всячески поносимые ими времена, обучают не в чувашских, а в русских или английских школах.

Хочу, чтобы меня правильно поняли. У меня не повернется язык упрекнуть моих соплеменников за их тягу к русскому языку. Всем нам он жизненно необходим – такова уж наша историческая судьба. Вопрос в другом – надо ли в стремлении овладеть русским языком забывать свой родной язык? Разве он мешает нам в жизни? Почему в нашем сознании они должны быть соперниками? Ведь они вполне могут быть помощниками друг другу. Во всех европейских странах любой мало-мальски образованный человек кроме своего родного языка знает, по крайней мере, еще один язык.

Двуязычие во всем мире нынче не роскошь, а жизненная потребность. А для нас и подавно. Принятый в нашей республике Закон о языках лишь констатирует сложившуюся реальность. Этот закон, несмотря на архисложные экономические условия, начал работать. В законе предусмотрено достаточно мер, направленных на повышение социального статуса чувашского языка. Таким образом, на данном этапе для любого политика, опирающегося на реальность и действительно озабоченного интересами своего народа, задача заключается не в противопоставлении двух государственных языков, а в поисках приемлемых способов распределения их общественных функций. В пашем сознании эти языки не воюют друг с другом. И не надо стремиться сталкивать их искусственно.

И. АНДРЕЕВ,
профессор, председатель языковой комиссии при
Верховном Совете Чувашской Республики.
*«Советская Чувашия», 11.12.1992.*

## ЛЕНСКИЙ ГОСПОДИНĂН ХĂРУШĂ ТĔЛĔКĔ

*10–15 çул каярах коммунистсен пресси Чăваш Ен çинчен яланах «хĕвеллĕ» эпитетпа усă курса çырнă, унта индустри хăватлă аталаннине, часах Шупашкар пăхаттирне – Улăп-трактор кăларма пуçлассине, Шупашкар тинĕсĕ шавланине, «симĕс ылтăн» туса илнине, унта 80 (е 90) наци представителĕсем социализма аталантарассишĕн тар юхтарса вăй хунине тата ыттине те палăртнă.*

Халĕ «Правда» хаçат суверенлă Чăваш Республики пирки пачах урăхла ытарлă сăмахсемпе усă курса çырать: «рак шыççи», «унччен нимĕнпе те палăрса тăман лăпкă Чăваш ене хура пĕлĕтсем хупăрлаççĕ», Раççейĕн темĕнле укăлчи пур, унта чăвашсен юншăн антăхакан «сарă кашкăрĕсем» асав шăлĕсемпе шаккаса хăратаççĕ.

Мĕншĕн тăруках çакнашкал улшăну тата мĕншĕн-ха Ленский господин статйинчи («Серые волки у околицы», «Правда», 1992 çулхи раштавăн 11-мĕшĕ) сăмахсенче тискер кайăкла курайманлăх чуна пăралать? Пĕр пытармасăр йышăнатăп: хаçатри пĕчĕк çеç лаптăкра ирсĕр ултавпа политика провокацийĕ çав таранччен нумай вырнаçтарма май килнине эпĕ халĕччен курманччĕ-ха (тепĕр чухне хутран-ситрен «Вучах» хаçата пăхкаласа тухатăп пулин те). Ман шутпа, сăлтавĕ кунта пĕрре. Коммунистла идеологема тĕп пулнă хыççăн шăпах хайсен пĕтĕм ырлăхне çухатнисем, коммунизм кĕрнеклĕхне çирĕплетес тĕллевпе наци культурин тин çеç шăтса тухма пуçланă чĕрĕ калчисене нумай çул хушши таптаса хытарнисем, наци интеллигенцийĕн представителĕсем хушшинче урăхларах шухăшлама хăюлăх çитернисене йĕрлесе пурăннисем, официаллă хутшăнусенче, хут ĕçĕнче, культурăра, вĕренÿ системинче тăван чĕлхепе усă курассине манăçа кăларнисем, ăна йăлара çеç калаçмалли чĕлхе шайне антарса лартнисем, шăпах панкрута тухнă çав комидеологсем наци чĕрĕлĕвĕн йĕркеллĕ пулăмĕсене хурлама, Чăваш наци конгресĕ пирки, çавăн пекех чăваш халăхĕ, пĕтĕм Чăваш Республики пирки усал ят сарма хăтланаççĕ. Мĕншĕн тесен «Правда» хаçат яланах вĕсен рупор пулнă, малашне те çаплах пулса юлать ĕнтĕ. Анчах ку хутĕнче вăл, çакă асăннă статьяран та курăнать, ниме юрăхсăр, чи киревсĕр ултавсемпе те усă курма йĕрĕнмест.

Нимĕнпе килĕшсе тăман ултав çине ултав тиенет, вĕсем мĕн чухлĕ нумайрах – çавăн чухлĕ лайăхрах, нимех те ăнланман, анчах чăнласах хăраса ÿкекен ахаль вулакан пуçне çавăрма, ухмахлантарма çавăн чухлĕ çăмăлтарах-тăр.

Тĕслĕхрен, пĕр енчен илсен Ленский господинăн сăмахĕсем тăрăх çапларах пулса тухать: чăвашсем хальлĕхе хăйсен «авалхи чăваш тĕнне» упраса пурăнаççĕ (е çĕнĕрен чĕртсе пыраççĕ), тепĕр енчен пăхсан – «тĕрĕк халăхĕсен çемйинчи чĕрĕлÿ, ислам никĕсĕ çинче пулсан та, вĕсемшĕн (чăвашсемшĕн) илĕртÿллĕрех пулма пултарать. Çитменнине тата Атăл тăрăхĕнче чăвашсене, тутарсемпе пушкăртсене пĕрлештерекен ислам патшалăхне туса хумалли проект та пур имĕш. Çапла вара Ленский господин пĕтĕм халăха республикăра пачах пулма пултарайман ислам никĕсĕн ĕмĕлкипе хăрататъ.

Халăх ăнлавне пăтраштарас, çынсене хăратас тĕллевпе усă курма хăтланнă иккĕмĕш сăлтавĕ – вăл Чăваш наци конгресĕн, юпа уйăхĕн 8–9-мĕшĕсенче Шупашкарта пулса иртнĕ тата чăваш халăхне пĕрлештерес, çĕнĕрен чĕртсе аталантарас, çав шутра Раççей Федерацийĕнче, СНГра тата аякри чикĕ леш енче пурăнакан чăвашсемпе çыхăнас енĕпе калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ событи пулса тăнă Конгресс йышăнăвĕсем. ЧНК «ытлашши тÿрккес программа» йышăннă имĕш, унăн тĕллевĕ Раççейĕн килпетсĕр пысăк организмне тытса тăракан тата «хавшама пуçланă кĕлеткине тĕпĕйĕрĕпех çапса хуçасси» иккен. Анчах ЧНК йышăнăвĕсене пирĕн Аслă Советăн республика суверенитечĕпе çыхăннă законĕсене аталантарса тата тĕнчери право нормисемпе килĕшÿллĕн палăртса хатĕрленĕ тата çирĕплетнĕ. Паллах, «Правда» эмиссарĕ, тоталитарлă импери идеологийĕн çĕпри çинче «хăпарса, пиçсе çитнĕскер», чăн-чăн федерализм идейипе килĕшме пултараймасть ĕнтĕ. Çавăнпа та Раççей историне, çитменнине совет саманинчи историе те пулин, пĕлменнине, ку тĕлĕшпе нимех те ăнкарса кайманнине кăтартса панă, суверенлă Чăваш Республикине Раççейри «çĕнĕ пĕрлешÿ» (?) тесе пĕлтерет. Совет влаçĕн пирвайхи çулĕсенчи большевиксем те чылай ăслăрах пулнă, наци ыйтăвне татса панă чухне чăнлăха шута илме тăрăшнă.

Çак тамашасене ăнлантармалли сăлтав паллă ĕнтĕ – халăха «Раççей саланса каяс хăрушлăх» пирки ĕнентересси, çакăншăн национал-радикалсене айăпласси.

Малалла вара «пирĕн» пĕлтерÿçĕ «пĕлекен çынсен» сăмахĕсем тăрăх тем те пĕр пакăлтатса кĕрсе кайнă: «Наци оппозицийĕ... Вăрттăн правительство йĕркеленĕ, унта ытти министрсемпе пĕрлех ют çĕр-шыв ĕçĕсен тата оборона министрĕсен должноçĕсене кĕртнĕ, «сăрă кашкăрсен отрячĕсене» хатĕр тытаççĕ», «...чăвашсен 80 проценчĕ, тĕпчевсем кăтартса панă тăрăх, вырăсла шухăшлать», – мăн кăмăлланса пĕлтерет ятарлă корр. Лингвист пулнă май, çапла çирĕплетме хăюлăх çитеретĕп: шухăшлавăн тĕп тытăмĕсем пачах та чĕлхепе çыхăнман. Ку вăл пирĕн пуç миминче пулса иртекен хăйсене майлă сăнарлă логика-семантика процесĕ. Çавăнпа та никам та, ниçта та, нихçан та çавнашкал тĕпчевсем иртерме пултарайман. Мĕншĕн тесен лингвистикăра «хăш чĕлхепе шухăшлатăн?» текен айванла ыйту лартма май çук.

Паллах, Ленский господин мăшкăлласа çырнă элеке курмăш пулса

иртме те юратчĕ пулĕ, анчах çак ултава вĕçлесе вăл юлашкинчен çапларах «геополитикăлла» пĕтĕмлетӳ тăвать: «Раççей ӳт-пĕвĕ çинчи тур паллисем рак шыççине куçса пыраççĕ. Раççейĕн анăçри чиккисем тăрăх йĕркеленнĕ пĕр-пĕринпе туслашайман патшалăхсен унки (? — А.Х.) часах унăн тухăçри ӳт-пĕвне те касса татса пултарать». Ман шутпа, çакнашкал пĕлтерӳсем пирĕн республика экономикине тӳрремĕнех сиен кӳме пултараççĕ. Енчен те пирĕн урамсенче «сăрă кашкăрсем» алхасса çӳреççĕ пулсан, пирĕнпе кам договорсем, экономика килĕшӳсем тăвĕ, суту-илӳпе хуçалăх çыхăнăвĕсене кам аталантарĕ, кам инвестицисем парĕ?

Договорсемпе килĕшӳсем тăвайманнипе пулакан тăкаксене шутласа пăхма тивет, республика ырă ячĕ пирки вара калама та кирлĕ мар.

Çавăнпа та çывăх вăхăтра эпĕ Чăваш наци конгресĕ ячĕпе Игорь Ленский господина суда пама шутлатăп.

Атнер ХУСАНКАЙ,
Чăваш наци конгресĕн президенчĕ.
*«Хыпар», 12.12.1992, 253 №.*

## МЫ ЗЛА НИКОМУ НЕ ЖЕЛАЕМ
## Немного об истории, и не только о ней

**– Чăваш наци конгресĕ пуçланас умĕн сцена çине тухса чăваш тĕнĕн мăчавăрĕсем Микихвер, Юрий Беляков тата Элмен Чаптайĕ чăваш кĕлли ирттерчĕç. Конгресс Президиумĕнче ларнă Илья Карлинов протоиерей, такам асăрхаттарнипе ахăр, «тăна» кĕрсе трибуна умне тухрĕ, хăй те çав кĕлĕре пулнăшăн ÿкĕнчĕ, ÿкĕнчĕ çеç те мар – чăваш тĕнне «суя тĕн» тесе хăртма пуçларĕ. Паллах, ăслă-тăнлă делегатсем çапăçу хирне элес-мелес сиксе тухнă Христос «чурине» итлеме те намăсланчĕç – «таса атте» калаçăвĕ демократи тата хисеплĕ нормисене пăсни пулчĕ-çке. Çапах та çакăн ахрăмĕ халăхра сарăлать. ЧНК президенчĕ ячĕпе килнĕ çырусенче те палăрать çакă.**

**«Вырăс халăхĕнчен, православи тĕнĕнчен пистерсе, чăваш тĕнĕ тесе Киремете чĕрме хăтланни – чăвашсемшĕн пĕтмелли йăнăш утăм пулать», – çырать Комсомольски районĕнчи Киров поселокĕнче пурăнакан Н.К. Скворцов. Вăрнар районĕнчи Рункă ялĕнче «1912 çулта атте-аннесем хăй çутипе пурăннă вăхăтра çуралнă, халĕ Ильич лампочкисен çутинче пурăнакан» Петр Алексеевич Алексеев та чăваш тĕнĕ пирки питĕ йĕкĕлтешсе çырать, халăх халь пурнăçа хăй те аван пĕлет, тĕшмĕше ĕненмест тесе систерет. Шупашкарта Эгер бульварĕнче пурăнакан 45 çулхи Александра Васильевна Ефремован, рабочи пулса ĕçлекенскерĕн, шухăш-кăмăлĕ çапларах: «Чăваш халăхĕ Христос тĕнне йышăннăранпа пĕр ĕмĕр кăна мар иртсе кайрĕ. Халĕ чăваш ача çуралсанах ăна чиркĕве кайса шыва кĕртме васкать. Темлерен, тĕне хĕсĕрленĕ вăхăтра, ят хумасăр юлнă ачасем халĕ ÿссе çын пулса ватăлма ĕлкĕрнĕ пулсан та, чиркĕве кайса шыва кĕме васкаççĕ... Юлашки вăхăтра эпир мĕн куратпăр-ха? Пирĕн чăваш интеллигенцине ертсе пыракан хăш-пĕр юлташсем... пирĕн чăваш халăхне тăрăшсах Киремете хисеплеме хĕтĕртеççĕ... Мĕне кирлĕха кĕлеткесене пуç çапнă вăхăта куçни? Пирĕн аслă чăваш халăхĕ кĕлеткесене тепĕр хут пуç çапма пуçласан пирĕнпе кÿршĕллĕ халăхсем чăннипех пире ăнланмĕç...»**

– Авалхи чăваш тĕнĕ пирки шухăшăма пĕлтерем. Эпĕ ăна çавăн пек ăнланатăп. Чăн чăваш тĕнĕ чи малтан сут çанталăк йĕркине килĕштерет, уйрăм çынна çут çанталăкран уйăрмасть, сÿлти хăвата пăхăнтармасть. Çын – ирĕклĕ, анчах та ирĕк пурнăçра та йĕркене тытса тăмалла. Сут тĕнче чунлă пулсан, çыннăн çав чунлăха туйма, ăнкарма пултармалла.

Христос вĕрентĕвĕ тăрăх уйрăм çын çĕр çинче хăна пек пурăнать, «чăн пурнăçпа» мар, чăн пурнăç кайран тин пуçланать. Чăвашăн ун пек тума юрамасть, унăн кунтах пурăнмалла, кунти пурнăçа, тавралăха илем-тирпей кÿмелле.

Вăхăт тĕлĕшĕнчен те чăваш тĕнĕ хăй евĕрлĕ. Вилнисем, чĕррисем, ваттипе кĕçĕнни – пурте тăван, пурте пĕр вăхăтра пурăнатпăр. Иртнипе хальхи, хальхипе пуласси хушшинче чикĕ çук, Сут тĕнчене тытса тăракан – пĕртен пĕр Турă. Пирĕн вак-тĕвек ĕççене вăл тÿрремĕн хутшăнмасть, анчах вăл пуррине эпир пĕлсе тăратпăр.

Чăваш тĕнĕн тымарĕ питĕ тарăн, пĕтĕм тĕрĕк халăхĕсенчен эпир кăна, чăвашсем, чăн тĕрĕкле Турă ятне упраса хăвартăмăр.

Унсăр пуçне, общество аталанăвĕн хальхи тапхăрĕнче уйрăм çыннăн хăш тĕне суйласа илесси ирĕклĕ пулмалла – ку вăл çыннăн шалти ĕçĕ. Православи чиркĕвĕ вара паянхи лару-тăрупа усă курса (коммунизм идейи арканнă хыççăнхи тапхăрта), «çветтуй» вырăна пушă хăварас мар тенĕ пек, идеологи ĕçĕнче монополист пулса юласшăн. Раççей тÿре-шари те вĕсене ку енĕпе хĕтĕртсех тăрать, православи тĕнĕпе çыхăннă кунсене канмалли кунсем тумалли çинчен хушусем кăларать, радиопа телевидени урлă хăйсен шухăшне сарма пулăшать тата ытти те. Раççей патшалăхĕн пуçлăхĕсем чиркÿре кĕлĕре тăраççĕ.

Эпир, чăвашсем, çакна ăнкарма тивĕç: вырăс православийĕ культурăмăрăн аталанăвĕнче чи çиелте выртакан сий кăна, чăвашăн истори çулне тарăнрах тĕпчесен унта урăх тĕнсен витĕмĕ те палăрать. Чăваш сăмахлăхне, халăх юррисене е халăх ÿнерне илес пулсассăн, унта православипе çыхăннă тĕслĕхсем питĕ сахалли курăнать. Эппин, чăваш чунĕ ирĕклĕ тăрса юлма пултарнă. Христианлăхăн хăйĕн пархатарĕ те пур-тăр – çутлăх ĕçĕнче, çырулăха сарас тĕлĕшпе, анчах ăна чăн чăваш тĕнне хирĕç тăратмалла мар.

<...>

**Чăваш наци конгресĕ пулса иртрĕ. Унăн тĕп тĕллевĕ чăваш чĕлхине малалла аталантарасси, чăваш кульурине ÿстересси, халăхăн пурнăç условийĕсене лайăхлатасси, нацине наци хушшинчи çыхăнăва çирĕплетсе пырасси пулнă. Анчах Конгреса пур енчен тĕплĕн хатĕрленмесĕр ирттернипе – йышăнусем калаçнипех тăрса юлма пултараççĕ. Эпĕ ЧР Аслă Совечĕн депутачĕ пулнă май Конгресс умĕн пур суйлаври депутатсене пуçтарса пуху ирттересси пирки «Хыпарта» çырнăччĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем наци ыйтăвĕпе, унăн культурипе хуçалăхне ÿстерес ĕçре 60 çул хушши чи опытлă, пултаруллă çынсем, ĕçре малта пыракансем пулнă. Анчах ку кирлĕ мар ĕç тени курăнчĕ (П. Ефремов, Шупашкар районĕ, Кÿкеç).**

– Депутатсен пухăвне ирттересси вăл – пĕр ĕç, Чăваш наци конгреснe пухасси пачах урăхла ĕç тесе шутлатăп. Çитменнине, малтан суйланă депутатсем «чи опытлă, пултаруллă, малта пыракансем» тенипе эпĕ килĕшме пултаратăп, анчах политика ĕçĕнче вĕсенчен нумайăшĕ чăнчăн дилетант пулнă. Ун чухне суйлавсене те ячĕшĕн кăна ирттернĕ-çке, округра пĕр кандидатран ытла нихăçан та пулман. Пĕтĕм йышăнусене пĕр саслăн çирĕплетнĕ.

Паллах, паянхи пурнăç нушине курса нумай çын çав вăхăта çутă сăрăпа сăрлама хатĕр, хăйсене пылак аса илÿпе йăпатаççĕ. Çапах та паянхи йÿçĕ кун вăл пушă вырăнта ÿсмен. Çав 60 çул хушши коммунистсем тытса пынă политикăн «çимĕçĕ» пирĕн пыра халĕ ларчĕ.

Чăваш çĕр-шывне, унăн çыннисене мĕн патне илсе çитернине лайăх куратпăр. Чĕлхемĕр пирки те çавнах калас пулать.

Эпĕ хальхи пуçлăхсене тÿрре кăларасшăн мар, анчах вĕсем те тĕпрен илсен «çĕнĕ çынсем» мар, кивĕскерсемех.

Хамăрăн совет тапхăрĕнчи историе эпĕ пĕтĕмпех хурламастăп. Унта аталану тапхăрĕ те пулнă. 1917 çул хыççăн 12 çул хушшинче чăваша çĕклес, наци культурине аталантарас, чăваш чĕлхине патшалăх шайне лартас енĕпе чылай ĕç туса хăварнă. Кайран мĕн пулнине пурте лайăх пĕлетпĕр. Чăваш хресченне кăкланă, наци интеллигенцийĕн пăлхавăрччenхи тата çĕнĕ ÿсĕмне айăпласа пĕтернĕ те хăямата янă, аслă вĕрентекенĕмĕр Яковлев пуçланă çутлăх ĕçĕн традицине татнă, чĕлхемĕр аталанăвне хăйĕн тымарĕ тăрăх мар, вырăслатмалли çул-йĕр тăрăх, коммунистла «çĕнчĕлхе» (Оруэлла «новояз») çулĕпе янă тата ытти те.

**– «Эпĕ Чĕмпĕр облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Тимĕрçенте çуралнă чăваш. Ку таранччен Таджикистанра пурăннă. Вăтăр ултă çул зоотехникра ĕçлерĕм. Хальхи пăтрашуллă вăхăтра унта пурăнма май килмерĕ. Куславкка районĕнчи Аманик ялĕнче пурăнатпăр – ку вăл мăшăрăн тăван ялĕ.**

**Эпĕ мĕн каласшăн-ха? Конгресс усăллă пулни çинчен. Чĕлхене пĕтермĕç ĕнтĕ, чăваш халăхĕ пĕтмĕ. Конгресс ĕçĕ çеç сая ан кайтăрччĕ.**

**Эпир ĕлĕк те час-часах Чĕмпĕре, Шупашкара килсе çÿренĕ. Ниçта та хуласенче чăваш чĕлхине илтмен. Хăш чухне «чăвашсем хăй чĕлхинчен вăтанаççĕ-ши?» тесе шухăшлаттăм. Тата чăвашсем хăш наци çынни пулнине палăртасшăн маррине куратăм... Чăваш нацине шырамалла, тупмалла тата пĕрлештермелле», – çырать А. Блюдин пенсионер.**

– Чăваш нигилизмĕ чир тетпĕр. Ку питĕ хăйсене евĕр социаллăполитикăллă чир. Чăваш пулни паянхи кун – Чăваш çĕр-шывĕнчех – çынна усă кумест. Унăн хисепĕ çук. Чи малтан çакăншăн влаç тытăмĕ, влаçри çынсем айăплă.

750 çул каялла эпир патшалăхăмăра çухатнă, Атăлçи Пăлхар патшалăхне... Совет тапхăрĕнче тума пуçланă патшалăх (ун чухне ятарлă терминсем те пурччĕ – «патшалăх е чĕлхе строительстви») тулли правалла, хăй тĕллĕн аталанакан патшалăх пулман. Эпир ăна йĕркеллĕ этемлĕх шайĕнче патшалăх туса çитереймен. Вăл ни чăвашăн, ни кунта пурăнакан вырăсăн, тутаршăн, ирçешĕн ĕçлекен, çав тĕп халăха тата хăйĕн ытти гражданĕсене хўтĕлекен патшалăх пулман.

Мускавшăн, «центршăн», вăл паллă мар халăх пурăнакан «пĕчĕк территори» кăна пулнă, халĕ те çавах.

Блюдин çапла çырать: «Чăваш нацине шырамалла, тупмалла тата пĕрлештермелле...» Тĕрĕс сăмахсем. Анчах ку тĕрлĕ партисен, уйрăм çынсен ĕçĕ кăна мар, ку вăл пĕтĕмĕшле патшалăхăн ĕçĕ, вăл тытса пыракан шалти тата тулашри политикăн тĕп тĕллевĕ пулмалла. Енчен те пирĕн патшалăх çак ĕçе тума пултараймасан ун пек патшалăх пире ним тума та кирлĕ мар. Хăйне ят панă халăх ячĕпе витĕнсе калаçма унăн тивĕç çук.

Чăваш наци конгресĕ пирки калас пулсассăн – вăл икĕ кун хушшинче сўтсе явнă, йышăннă документсенче **пирĕн Аслă Совет икĕ çул ĕçлесе калама хăяйман шухăшсене калама пултарчĕ.** Çак шухăшсене пурнăçса кĕртесси вара патшалăх çыннисенчен те килет. Тата, паллах, пиртен кашниех чăваш ĕçне хăй пултарнă таран хутшăннинчен те.

<. . .>

**– Атнер Петрович! Манăн чăваш телевиденийĕ пирки сăмах пуçарас килет. Çак енчен те ытла та чухăн-çке эпир, чăвашсем. Пирĕнни пек чухăн телевидени вăхăчĕ çук та пулĕ – мĕн пурĕ 1,5–2 сехет уйăрса панă пире. Кăмăла пăсас мар тесе. Манăн хăй вăхăтĕнче тутар телевиденийĕпе нумай паллашма тўр килчĕ. Вĕсен тутар передачисем çуршар куна пыраççĕ, вырсарни кунсенче –кунĕпех. Çитменнине тата передача содержанийĕсем питех те пуян. (Михаил Леонтьевич Гордеев, Йĕпреç районĕ, Шăрттан ялĕ).**

– ЧНК массăллă информаци хатĕрĕсем çинчен ятарлă резолюци йышăнчĕ. Унта, тĕпрен илсен, радио тата телевидени сехечĕсене 6–7 сехет таран ўстерме палăртнă. Республика тулашне радио передачисене çитерме кĕске хумлă ятарлă радиостанци кирлине палăртнă. Телевиденин уйрăм чăваш каналĕ йĕркелемелли çинчен çырнă. Паллах, хальхи тапхăрта çаксене тума чылай укçа-тенкĕ тата çĕнĕ йышши техника хатĕрĕсем кирлĕ.

**– Чăваш çĕрĕсене инçетрен килнĕ, пысăк укçаллă армянсене, вырăссене тата ытти буржуйсене сутма ан васкăр. Чăваш хресченĕ ĕçлесе савăнмалли çĕрсене сутса пĕтерсен улпутсем каллех пире, ĕçчен халăха, тарçа илсе пĕтерĕç, чăваш çыннисем ĕмĕрлĕхех тыткăнра асапланма пуçлĕç. Çĕрсене чăвашсене анчах валеçме е сутма тăрăшар (Ев. Иванова, Çĕнĕ Шупашкар).**

– Ку вăл чăнах питĕ çивĕч ыйту. Эпир ăна ЧР «Гражданлăх законĕ» йышăнни урлă татса парасшăнччĕ. Урăхла каласан, Чăваш Республикин гражданинĕ кăна çĕр илме пултарнине саккун йĕркипе çирĕплетесшĕнччĕ. ЧНК сĕнĕвне Аслă Советăмăрăн хисеплĕ халăх депутачĕсем пăхса тухас та темерĕç, 13-мĕш сессин кун йĕркинчен гражданлăх законĕн проектне кăларса çапрĕç.

**– Шел те, авторне кăтартмасăр янă çыру – чун ыратнипе çырнăскер те пулма пултарать, тен – ятарласа провокаци тĕллевĕшĕн янăскер. Ыйтăвĕ çивĕч, çавăнпа та ăна та хуравласах пулать-тĕр. «Чăваш наци конгресĕ... анчах мĕн усси пулĕ пире? Чăвашăн пуçлăхĕсем ытла та «ăслă» вĕт-ха. Пуçлар йĕркерен: чăваш пуçлăхĕсем хĕпĕртесех хими комбинатне, трактор заводне тутарчĕç. Кама кирлĕ çав комбинатсем? Çавна май Чăваша килсе тулчĕç тĕрлĕрен çапкаланчăксем, чăваш пуçлăхĕсем вĕсене хĕпĕртесех йышăнчĕç. Чăвашра таçтан килнĕ çапкаланчăксăрах çын нумай пурăнатчĕ вĕт-ха!.. Пире питех те тарăхтараççĕ Çĕнĕ Шупашкарта... Ăçтан килсе тулнă вĕсем – çавăн пек усал çынсем? Троллейбуспа-и, автобуспа-и каятăн е пасарта куратăн – вĕсем ялан чăваш таса мар, чăваш культурăллă мар, чăваш айван, ухмах тесе калаçаççĕ. Пасарта сĕте пирĕнне шĕвĕ теççĕ, çăмартана вĕтĕ теççĕ, йывăç улмине йўçĕ теççĕ. Автобуса ларатпăр ватă çынсем – çамрăксен вырăн памаççĕ, черетре тăратпăр – çав çапкаланчăксем черетсĕр кĕрсе каяççĕ. Хула администрацинех илер – пĕтĕмпех вырăссем анчах, пур магазин заведующийĕсем те – вырăссем. Пирĕн ял çăви те тулса ларчĕ çав çапкаланчăк вырăссемпе, хăть вилме те килĕсене, хайсен тăван ялнехулине каймаççĕ. Ун пеккисене «изменники Родины» теççĕ халăхра. Тапса хăваласа ярас хуларан çав çапкаланчăксене (Шупашкар районĕ, Толик Хураски ял Совечĕ, Çăкалăх ялĕн çыннисем).**

– Çак ял çыннисен туйăмне ăнланатăп, çитменнине Çĕнĕ Шупашкара пула миçе чăваш ялĕ пĕтнĕ, халĕ хула администрацийĕ вĕсен ячĕсене хула урамĕсене те партарасшăн мар. Пурăн-ха малтан тăван килўнте, кайран ютран килнĕ çын санăн килне салатса ярать, пурнăç йĕркине тĕпрен улăштарать, сана хăвнах вара кўрентерет, мĕншĕн тесен эсĕ ăна тав туса пурăнаймастăн. Анчах та пирĕн çак кўренў туйăмĕнчен çўлерех пулмалла. Ку – пирĕн Тăван çĕр-шыв, çавăнпа та эпир кунта вырăс хушшинче пурăнакан чăвашсем мар, вĕсем пирĕн хушша килсе лекнĕ. Влаç ĕçне, хуçалăх ĕçне хамăр алла илмешкĕн хăнăхма вăхăт. Хура ĕçре чăваш маттур тесе яланах калаççĕ, ăс-хакăл ĕçĕнче те хамăрăн вăя кăтартмалла.

**– Пире, чăвашсене, хальхи вăхăтра хамар республикăра пурăнакан çынсемех ура хурса пыма тарăшаççĕ. Темле хальчен лексиконра пулман сăмахсем шутласа кăлараççĕ: «национал-патриот», «этнократ» тата тем те пĕр. Вĕсемшĕн Чăваш патшалăх Ялавĕ те, Гимнĕпе Гербĕ те ют. Вĕсемшĕн пурте «россиянин» пулмалла, анчах та каллех «Россия» ялавĕ те килешмест, мĕншĕн тесен вăл ялавпа хăй вăхăтĕнче Власов генерал нимĕçсем патĕнче усă курнă. Суверенитет тесен каллех вăл чăвашсене кирлĕ япала мар теççĕ.**

**Çакна ыйтас килет: «Пире, чăвашсене, мĕн кирлĕ?» «Алран кайми аки-сухи» – урăх ним те кирлĕ мар пулса тухать. Чăваш халăхĕ хăйсене пур халăхпа пĕр тан тесе шутласан, пире пурте кирлĕ. Эпир «суверенитет» тенĕ Чăваш çĕр-шывне Тăван çĕр-шыв тесе чыс тăватпăр. Тăван çĕр-шыва, тăван чăваш кĕтесне никам умĕнче те хур курма памалла мар. Чăвашра – чăвашлах, чăваш халăхĕ ун иксĕлми çăл куçĕ пулса тăмалла. Чăвашлăх малалла ĕмĕртен ĕмĕре куçса пытăр тесен тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи – иксĕлми вăй-хăват пулса тăмалла.**

**Хальхи вăхăтра чăваш интеллигенцийĕ хушшинче пĕрлĕх çукки пире каялла туртса пырать. Кашни хайне хăй «Эп кам?» тенĕ майлă хăтланать. Пирĕн чăвашра пĕрлĕх пулмасан эпир малалла та нумай çухатусем тăвасса кĕтме пулать. Хаçат-журналта пĕр-пĕрне хăртса, хур туса пысăк çитĕнўсем тума шутлаççĕ хăшĕ-перисем.**

**И. Семенов-Шахтер паян куна çитсе те чăваш халăхĕ çине марксизм-ленинизм идейи витĕр пăхать, вăл чăвашсем хушшинче националистсене шырать, вăл историксемпе, чĕлхе ученайĕсемпе тавлашу пуçарса ярать, пĕр сăмахпа каласан, кам чăваш халăхĕшĕн тăрăшать – вăл унăн «тăшманĕ» пулса тăрать.**

**Иван Павлович Тореев – юлашки вăхăтра «митинг» чирĕпе чирленĕскер, ним тума аптăранипе, «йытă мăнтăрлансан хăй хуçине тапăнать» тенĕ майлă, чавашсем хушшинче пурăнсах чавашсене тапăна пуçларĕ. Тореева эпир чăвашла калаçни те килĕшмест, вăл çак тарана çитсе те суверенитет мĕн тенине ăнланасшăн мар. Тореева çавăн пек канаш памалла: эсĕ Мари Эл çынни, Йошкар-Олана кайса йĕрке ту, кунта эпир, чăвашсем, хамăрăнне хамăр пĕлетпĕр (Сергей Небесный, Шупашкар хули).**

– Кунта автор хăй лартнă ыйтусене хăех хуравлать. Пире, чăнах та, пĕрлĕх те, республика суверенитечĕ те, чăваш идейи те, «Алран кайми аки-сухи» мухтав юрри те кирлĕ.

И. Семенов-Шахтерпа И. Тореев пирки манăн сăмах та ваклас килмест. Вĕсем çырнисене е вĕсен хăтланкаларăшĕсене сăнаса пыракансем çак çынсен ăш-чикне витĕр кураççĕ. Манăн И. Тореева Мари Эл республикине те ярас килмест. Çармăссем пирĕн çывăх кўршĕсем, эпĕ вĕсене усал сунмастăп. Эпĕ икĕ çак мĕскĕне шеллетĕп, вĕсем чăтлăхра аташса кайнă çынсене аса илтереççĕ. Халĕ вĕт сĕмленў тапхăрĕ, политика ĕçĕ

тавра такам та çапкаланса çӳрет. Çак социаллă чир хальхи охлократи тапхăрĕн палли ĕнтĕ. Иккĕшне те Чăваш Енри паллă охлократсем тесе каланă пулăттăм.

<...> **– Акă тата икĕ çыру. Те каллех провокаци, те – чăннипе пурнăçра ытти халăх çыннисенчен хĕн-хур тӳснипе çырнăскер. Акă пĕрремĕшĕ: «Чăваш халăхĕн Конгресне, Хусанкай юлташа. Мĕскĕн халăх, чухăн халăх, пусмăра чăтма вĕреннĕ халăх – чăваш халăхĕ! Хăçанччен чăтса пурăнма пиллерĕ-ши Турă ку пусмăра? Тĕп пусмăр – вырăс халăхĕнчен. Хăваламалла, хăваламалла, хăваламалла! Пĕр вырăс юлмиччен. Килсе тулнă вырăс çыннисен пĕлӳлĕхĕ те çук, анчах та хăйсен пуçламăш тата вăтам пуçлăхĕсемпех пысăк пĕлӳллĕ чăваш халăхĕпеле пуç пулаççĕ. Пусмăрçăсем пĕччен мар, вĕсен шутне хохолсем, еврейсем те кĕреççĕ. Чее пуçлăхсем пĕтĕм предприятисенче вăрлаççĕ, çаратаççĕ. Эпир, чăвашсем, пăхса кăна тăратпăр. Ним тума та пултараймастпăр...» Иккĕмĕш çыруран: «Эпĕ вăтă çын. Пирĕн чăваш халăхне вырăссем ним вырăнне те хумаççĕ, йывăр, чăтмалла мар сăмахпа хурлантараççĕ. Чăвашсем пурте трахомлă теççĕ, сиртен трахом чирĕ ытти çынсем çине сикет теççĕ. Мĕншĕн чăваш халăхĕн çак мăшкăла чăтмалла? Вĕсенчен уйрăлмалла, кайччăр ăçтан килнĕ унта... Эпĕ сирĕнне, А.П. Хусанкай, нумай статья вуланă, эсĕ чăваш халăхĕшĕн çав тери тăрăшатăн тата çамрăксене тӳрĕ çутă çулпа ертсе каясшăн, анчах сана ура хурса такăнтарасшăн хăш-пĕр вырăс çыннисем. Хальхи йывăр пурнăç вăхăтĕнче пире хамăрăн Президент питĕ кирлĕ, пире кун пек пурăнма йывăр... Пĕр халăх çынни тепĕр халăх çыннине чăтма çук кураймании мĕнрен килет? Чир-и вăл? Çав кураймансăх ан амалантăр тесен мĕн тумалла: чăтмалла, ал сулмалла, кĕрешмелле, ку пурнăçран уйрăлмалла-и?**

– Кунта сăлтавсем, ман шутпа, нумай. Калăпăр, общество шухăшлавĕнче чеченсем пирки тĕрлĕ шухăш çирĕпленнĕ – вĕсем вăрă-хурах, вăрçма юратакан халăх, пурте хĕç-пăшалпа, вырăссемпе вăрçа тухма хатĕр тата ытти те. Çак шухăшсене хăй ĕмĕрĕнче пĕр чечен çыннине курман çын та калама пултарать. Эппин, общество шайĕнче (Раççей обществи пирки сăмах пырать) çавăн пек стереотип саралнă, ăна сас-хура, массăллă информаци хатĕрĕсем туса хунă. Ун пек сăнарăн истори тымарĕ те пур. Чеченсене вăрçă вăхăтĕнче ватти-вĕтти тарăн «совет халăхĕн тăшманĕ» тесе хăйсен тăван çĕрĕнчен хăваласа янă. Пирĕн интернационализм идеологийĕ уйрăм халăхсем (чеченсем, калмăксем, Крым тутарĕсем) тăшман пулма пултарнине шăппăн кăна йышăннă.

Тепĕр халăх çыннине кураймании уйрăм çыннăн психологи шайĕнче те пулса иртме пултарать. Психоанализ меслечĕ вĕрентнĕ тăрăх, ача чухнех çын куçĕнче пĕтĕм тĕнче икĕ пая пайланать: хамăр çынсем (е тăвансем) тата хамăр мар (ют) çынсем. Енчен те пĕчĕк ачана хамăр мар çын кӳрентернĕ пулсан, «чăваш» сăмахах кӳрентермелли интонаципе каласан е урăхла ĕçпе палăртсан, ачан çав суранĕ ĕмĕрлĕхех юлать. Кайран вăл уйрăм чир комплексне çаврăнма пултарать. Çыншăн хăйĕншĕн çав чир комплексĕ икĕ енлĕ пулма пултарать: мĕскĕнлĕх тĕслĕ е тӳрккеслĕх, мăн кăмăллăх тĕслĕ.

Манăн шухăшăмпа, çынна нацилĕхпе кăна хаклани, унпа паллашиччченех унран тăшман сăнарĕ тăвасси вăл, паллах, хăрушă япала. Чăваш хушшинчех, каçарăр та, тăвансем, ырă мар, айван, правур мар çынсем тем чухлĕ. Ытти халăх çыннисен хушшинче те тĕрлĕ этем.

**– Хамăрăн ĕмĕрхи, уйрăмах юлашки 60–70 çул хушшинчи мăнтарăн чăваш чĕлхи çинчен. Мĕншĕн çав териех хисеплеместпĕр-ши, вырăна хумастпăр-ши ăна хамăрăн Чăвашстан Республикинчех! Çак аслă, вĕççĕр-хĕрсĕр тĕнчере пире, чăвашсене, пĕчĕк çеç республика уйăрса панă. Хăть хамăра хĕсе-хĕсе уйăрса панă çĕршывра та пулсан тăван чĕлхемĕре вилме парас марччĕ. Эпир вĕт республикăра питĕ компактлă пурăнатпăр. Вĕççĕр-хĕрсĕр Якутире якутсем 33 процент, Пушкăртстанра пушкăртсем 23 процент, Мордва Республикинче ирçе-мăкшăсем 32 процент, Мари Элре марисем 43 процент, Тутарстанра тутарсем 49 процент. Эпир вара хамăр чăвашра – 68 процент! Анчах – парадокс: хамăр республикăра кашни çĕр çынран 68-шĕ чăваш пулсан та, Шупашкара килни виç кун иртсенех вырăсла лĕпĕртетсе çӳреме пикенетпĕр. Пухусем, митингсем, уявсем, ăмăртусем – пĕтĕмпех вырăсла. Хула урамĕсенче пĕтĕм плакатсем, декоративлă çырса хунисем, пĕлтерӳсем т. ыт. те – вырăсла. Кам чарать пире, тăнсăр чăвашсене, пур çĕрте те – ĕç вырăнĕнче-и, шкулта е садикре, кинора, театрта, институтра е учреждениre, общество вырăнĕсенче, транспотра хамăр чĕлхепе калаçма? Чăваш чĕлхи республикăн патшалăх чĕлхи-çке!**

**Часах акă паспортсем улăштарма пуçлĕç – мĕншĕн тесен эпир халĕ те Совет Союзĕн гражданинĕн паспорчĕпе пурăнатпăр. Пирĕн ученăйсен, политика ĕçченĕсен, чĕлхеçĕсен ку енĕпе халех ĕçлеме пуçламалла. Ытти республикăсенче ĕçлеме пуçланă ĕнтĕ. Чăваш Республикинче паракан паспортра, ман шутпа, çакăн пек пулмалла: титул листинче пĕчĕк сас паллисемпе «Раççей Федерацийĕн», пысăк сас паллисемпе – «ЧĂВАШСТАН РЕСПУБЛИКИН гражданинĕн (хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ) ПАСПОРЧĔ».**

**«Чăваш Республики» тенине йышăнмастăп, «Чăвашьен» те халăхра нихçан та сарăлас çук. Пĕтĕм тĕрĕк халăхĕсенни евĕр, пирĕн республика «Чăвашстан» пулмалла.**

**Тата çынсен ячĕ-шывĕ пирки. Тутарсен паспортра ĕлĕкренех тутарла çыраççĕ. Паспортра çеç мар, официаллă мĕн пур документсенче (паллах, тутарла хаçат-журналта та). Тĕслĕхрен, вырăсла Зарипов Мирза Абдуллович пулсан тутарла – ЗЭРИПОВ МИРЗА АБДУЛЛА УЛЫ. Гайнуллина Рамзия Закиевна пулсан, тутарла – ГАЙНУЛЛИНА РЭМЗИЯ ЗЭКИ КЫЗЫ. Пушкăртстанра та çаплах. Пирĕн те çаплах пулмалла. Вырăса кăларса пурăнчĕç пире коммунистсем хăйсен «наци политикин» идеологийĕпе – çитет! Чăвашах пуласчĕ пирĕн. Официаллă хутсенче, сăмахран, малтанлăха, çапла пулмалла (çав шутрах – паспортсенче те): Ятманов Валерий Петрович – Ятман Валери Петĕр ывăлĕ. Хузангай Атнер Петрович – Хусанкай Атнер Петĕр ывăлĕ. Кунта ăсчахсен ĕçлемелли питĕ нумай (И.И. Макаров, Шупашкар хули).**

– Хăйĕн çырăвĕнче Макаров тăван чĕлхене аталантарас тĕлĕшпе питĕ усăллă сĕнӳсем парать. ЧНКн чĕлхе секцийĕн ларавĕнче эпир «Чăваш чĕлхине пурнăçа кĕртмелли патшалăх программин» проектне сӳтсе яврăмăр. Унпа ĕçлеме тытăнсан чылай сĕнĕве шута илме пулать. Тен, çак патшалăх программин проектне халăх умне кăларма анлăрах майсем тупăпăр. Паллах ĕнтĕ, чи малтан хăйсен шухăшне чĕлхеçĕсен, вĕрентекенсен каламалла – чĕлхе политикин çул-йĕрне ăнланакан çынсен.

**– «Чăваш! Ĕлĕк хĕн-хур айĕнче пурăннăскер, халĕ ирĕклĕ, ыттисемпе тан халăх пултăн. Малтанхи утăмсем сулмаклă мар пулин те – вĕсем ирĕклĕ, хаваслă утăмсем. Тăн илесси, таварпа суту-илӳ тăвасси хăвăнтан килет. Акăлчанпа, французпа, нимĕçпе, япунпа тан ут эсĕ!.. Нумай çĕр-шывра пирĕн çынсем – чăвашсем пурăнаççĕ. Вĕсен чăваш туйăмне хавхалантарасси – пирĕн тивĕç. Çак ĕçре Чăваш наци конгресĕ пысăк утăм тăвĕ...», – хавхаланса çырнă Шупашкарта пурăнакан Павел Александрович Федоров.**

– Çак сăмахсене малтанхи ыйтăвах панă хăйсене евĕр хурав пек е прозăллă сăвă йĕркисем пек вулама пулать. Эпир пуринпе те тан халăх, такамран темскер ыйтмастпăр – пĕтĕм тĕнче йĕрки тăрăх çирĕпленнĕ хамăра тивĕçлĕ правасене çĕнсе илес тесе çине тăратпăр.

Пичете ИЛЛЕ ИВАНОВ хатĕрленĕ.
*«Хыпар», 5.02.1993, 25№.*

## ХИРĔÇĔВЕ КАМ ПУÇАРАТЬ?

*Юлашки вăхăтра массăллă информаци хатĕрĕсенче наци туйăмне çĕклеме тăрăшакансене тапăнни куç кĕрет. Çакна чылай чухне урăх çынсен шухăшĕ хыçне пытараççĕ, вăрттăн çыртма тăрăшаççĕ. «Ĕнентерӳллĕрех» пулас шутпа Хусанкай, Туркай, Айдак статйисемпе калаçăвĕсенчен уйрăм сăмахсем туртса кăлараççĕ, урлă-пирлĕ вулаççĕ – айăплав хатĕр те. Паллах, çакнашкал хăтланни сиен çеç кӳрет. Нацисене хирĕçтерме сăлтав параканнисем те Хусанкайпа унăн тавраш ĕнчи çынсем мар, асăннă йышши статьясен авторĕсем текен шухăша çирĕплетет. Ман шутпа, наци юхăмĕн ертӳçисен ĕмĕчĕсемпе тĕллевĕсене Чăваш наци конгресĕн йышăнăвĕсене тишкерсе хак памалла.*

Ăçталла тата мĕн тума чĕнеççĕ-ха Конгресс документчĕсем? Тĕп шухăш – Чăваш Енĕн пĕтĕм чăвашсен тăван амăшĕ вырăнĕнче пулмалла. Çак шухăша пурнăçа кĕртмешкĕн, вĕсен шучĕпе, акă мĕн тумалла: шкулсенче чăвашла вĕрентессине йĕркелемелле, çакна пурнăçлама май çук шкулсенче вара тăван чĕлхене вĕренме кирлĕ условисем туса памалла; тутарсемпе ирçе-мăкшăсем валли тăван чĕлхе вĕрентме шкулсем уçмалла; Чăваш Республикин территорийĕнче патшалăх чĕлхи тесе пĕр чĕлхене – чăваш чĕлхине йышăнмалла; Раççейĕн, СНГн ытти регионĕсенче пурăнакан чăвашсене наци туйăмне упраса хăвармашкăн пулăшса пымалла.

Çак йышăнусем хăш наци ирĕкне хĕсеççĕ?

Анăçран вырăссем, тухăçран тутарсем хĕстернине пула чăвашсен ирĕксĕрех Хаяр Ивана пăхăнма тивнĕ. Несĕлĕмĕрсем тĕрĕс тунине каярахпа пулса иртнĕ ĕçсем çирĕплетеççĕ. Патша Сăрпа Сĕве тăрăхĕнчи çĕрсене чăвашсене панă. Вăл чăваш çĕрсĕр пурăнаймасса ăнланнă. Хаяр патша политикине ытти патшасем те тытса пынă. Чăваш шкулĕсем уçăлнă. И.Н. Ульяновпа И.Я. Яковлев патша ирĕк памасăр Чĕмпĕр кĕпĕрнинче чăваш шкулĕсем уçайман пулĕччĕç. Ун чухне те çак ĕçе нацисене хирĕçтерет тесе хакланă пулсан? Логика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс шухăшласчĕ.

Чăваш Республикине час-часах Балти тăрăхĕнчи республикăсемпе танлаштараççĕ. Чăнах та, ыйтăвĕсем пĕр еврĕлĕ: чĕлхесене упраса хăварасси, нацисене аталантарасси. Анчах уйрăмлăхсем те çук мар. Чăваш Енре вырăс шкулĕсене хупаççĕ-и? Тутарсемпе ирçе-мăкшăсем валли наци шкулĕсем уçас тĕллевпе ыйту тăратман-и? Пысăк должноçсенче пирĕн ытларах вырăссемпе тутарсем лармаççĕ-и? Урăх наци çынни пулнине кура хĕснине ăçта асăрхатăр? Чăваш чĕлхине пĕлменшĕн хăш учрежденире вăл е ку должноçа йышăнма чарнă тĕслĕх пулнă?

Чĕлхене пĕлни – çав нацие, унăн йăли-йĕркине хисеплени. Вырăс пуçлăхсенчен, эпĕ пĕлекеннисенчен, вăрман хуçалăхĕн министрĕ пулнă Г. Егоров çеç чăвашла пĕлет. Шăпах çавăн йышши çынсем ĕлĕкех чăваш нацине упрама пулăшнă. Турра тав, Егоров пеккисем вырăссем хушшинче ытларах. Шăпах çавăн пек çынсемпе туслă пурăнма халалласа хăварнă та пире И. Яковлев.

Чăваш чĕлхине пĕртен пĕр патшалăх чĕлхи туса хурассине те вăйпа хирĕçлеççĕ. Çак тĕлĕшпе ĕç-пуçа пысăклатса кăтартни, пулманнине пулнă пек туни тем чухлех. Ăна-кăна ăнланакан кашни çын вăл е ку наци лайăх пурăнтăр тесе уйрăм патшалăх тунине ăнкарать. Çак тĕллеве тытмасан кам валли вăл – Чăваш Республики? Чăвашсене аталанма хальччен кирлĕ условисем пулнă-и? Çук. Чулхулари е Ульяновскри пĕр-пĕр пысăк должноçри чăваша пĕлетĕр-и? Кăсăклă: енчен те Чулхула облаçĕнчи пĕр-пĕр прокурор е урăх должноçри çын вырăсла пĕлмесен ун пирки халăх мĕн шухăшланă пулĕччĕ-ши? Пире вара ЧР Министрсен Совечĕн председателĕ, хула прокурорĕ чăвашла пĕлменни çырлахтарать.

Чăваш Енре чăваш чĕлхине патшалăх чĕлхи шайне çĕклеймесен, тĕп хуламăрăн чăвашла ятне – Шупашкара – çирĕплетеймесен мĕн тума кирлĕ пире Чăваш Республики? Пропаганда тĕллевĕсем валли-и? Эпир вырăссене «Москваран» «Мускав» тума хушмастпăр-çке, пире вара ирĕксĕрех «Чебоксары» сĕнеççĕ. Горький хулин чăн ятне таврăма укçатенкĕ тупăнчĕ, Шупашкар валли – çук.

Чăваш чĕлхине пĕртен пĕр патшалăх чĕлхи туса хума ыйтни вырăссене хĕсĕрлессине, ĕç хучĕсене чăвашла çеç çырассине пĕлтермест. Ку – вăраха пымалли ĕç, ыйтăва юриех кăткăслатма кирлĕ мар.

Чăваш чĕлхине патшалăх чĕлхи туса хунă май пĕртен-пĕр чару кĕртмелле: чăвашла пĕлмен çынна (хăш наци представителĕ пулни пĕлтерĕшлĕ мар) влаçри должноçсене шанса памалла мар. Чăвашла пĕлмен пуçлăх чăвашăн интересĕсене хутĕлеме пултараймасть – кун пирки иккĕленместĕп. Ман шутпа, çак шухăш никамăн правине те хĕсмест.

Чăвашсен республика тулашĕнче пурăнакан йăхташăмăрсемшĕн те тăрăшмалла тенипе те килĕшмелле. Вырăссене, тутарсене, ытти халăхсене аякри тăванĕсен шăпи кăсăклантарать-çке, эпир катăк-им?

Конгресс документчĕсене уйрăм граждансем çеç мар, партисен ертÿçисем те тишкереççĕ. Ку савăнтарать. Документсене питĕ ăнăçлă хатĕрленĕ, çавăнпах пулĕ вĕсем нумайăшне сÿрĕклĕхрен вăратрĕç. Апла пулин те политика партийĕсен ертÿçисен тиркевĕнче документсемпе тĕплĕн паллашманни палăрать. Кăтартăвĕ – хăйсем арпашаççĕ, ыттисене арпаштараççĕ. Конгресс документчĕсене ЧР Конституцийĕ тĕлĕшĕнчен экспертиза тăваççĕ, çакăнпа пĕрлех Аслă пуху патшалăх органĕ мар – СНГ территорийĕнче пурăнакан мĕн пур чăваш наци органĕ пулнине манаççĕ. Ытах экспертиза тăвас тăк – Пушкăртстан, Тутарстан, Мари Эл конституцийĕсемпе те ĕçре усă курăр. СШАнне те манса ан хăварăр.

Темшĕн пирĕн хисеплĕ политиксем хăйсем пăхса тухма тивĕçлĕ ыйтусемпе тимлĕ ĕçлемеççĕ. ЧР Юстици министерствине «Конгресс документчĕсене право тĕлĕшĕнчен пĕр тĕхтамасăр хак пама» хушмашкăн именмеççĕ. Хушаканĕсем çÿлерех тăракан органсем пулмалла пек ĕнтĕ. Çук-çке. Сăпайлăх тени партисен ертÿçисемшĕн кăтартуллах мар çав.

Наци юхăмне чĕререн парăннă çынсене туман ĕçе тунă тесе кăтартма кирлĕ мар. Вĕсене «гени», «çулпуç» вырăнне хурса хаклани те ытлашши пулĕччĕ. Çапах Çеспĕлĕн шăпине аса илтерес килет. Тăван енре ăна хĕснĕ, хирĕçленĕ, çавăнпах унăн кунтан тухса кайма тивнĕ. Хăçан чăвашăн чыса тивĕçлĕ ывăлĕсене вăхăтра тата кирлĕ пек хаклама вĕренсе çитĕпĕр? Вĕçсĕр-хĕрсĕр йăнăшсенчен хатăлса пырасчĕ.

Малашне пире мĕн кĕтет? Вырăссемпе чăвашсем хушшинчи наци хирĕçĕвĕ-и? Çук. Чăваш аталанăвне асăннă йышши чăвашсем ертсе пынă чухне, С. Чехов, Г. Егоров, А. Кассиров, Я. Мартьянов, В. Тарапыгин пек вырăссем пире ăнланса пулăшнă вăхăтра, вĕсен хыçĕнче В. Косарук пек украинецсем тăнă чухне сехĕрленме сăлтав çук. Вырăссен пĕчĕк ушкăнĕ çеç асăрхаттарать: «Ачасем, вутпа ан выльăр...» Конгреса тапăнакан статьясен пысăк пайне чăвашсем е вырăссем çырман (çакă савăнтарать), хăйсен тăван чĕлхине маннă, тымарне çухатнă манкуртсем калăпланă.

Чăваш çырулăхне латин шрифчĕ çине куçарма чĕнни те, ман шутпа, сиенлĕ. Çакнашкал чĕнÿсене пурнăçа кĕртни мĕн парать? Айванлăх – хаклă савăнăç, çакна çирĕплетет. Йăнăшмастăп пулсан, тутарсем маларах латин шрифчĕпе усă курнă. Чăвашсем усă курман. И. Яковлевăн халалне аса илер те латин шрифчĕ пирки тухса тăнă «вĕрçĕнĕ» шухăша яланлăхах çÿп-çап шăтăкне кайса пăрахар. Кам та пулин чăнахах та ют сас паллисемпе усă курас тесен – ан чăрмантарăр, ĕçлетĕр. Чăвашсене мĕнле айванла сĕнÿ панине хăй курса-туйса ĕнентĕр.

Чăваш Республикине Раççей йышĕнчен кăларас шухăшăн «ашшĕсем» те чăваш наци юхăмĕн ертÿçисем имĕш. Тĕрĕссипе, ку шухăш та мар-ха, ухмахла тĕлĕк çеç. Раççей варринче пурăнатпăр, унтан тухас ĕмĕт çук пирĕн. Эпир Раççейпе тĕрлĕ шайри пиншер, миллионшар çиппе çыхăннă. Çак çыхăнăва татăпăр-и? Яваплăхсăр хăш-пĕр çынсен сăмахне чăнлăх вырăнне хурса йышăнас марччĕ.

Наци хирĕçĕвĕсем валли сăлтав паракансем чăннипе камсем? Хусанкайпа Туркай-и, Айдакпа Краснов-и? Е Конгресс-и? Е хăйсем шутласа кăларнă сăмах-юмаха Наци конгресĕн йышăнăвĕсем пек кăтартакан, авторлăхне Хусанкая тата унăн командине «парнелекен «ĕçченсем-и»?

Вулакан мĕнле шутлать?

Ман шутпа, Хусанкайпа унăн ĕçтешĕсем халăхсен туслăхне çирĕплетеççĕ. Хăйсен суялăхĕпе палăрнă çынсем, Конгресс йышăнăвĕсене пăсса урлă-пирлĕ çавăрттараканскерсем – киревсĕр тĕллевĕсене пурнăçлас ĕмĕтпе нацисене хирĕçтерме талпăнакансем.

Л. АНДРЕЕВ, ЧР Вăрман комитечĕн юрисконсульчĕ.
*«Хыпар», 13.02.1993, 31№.*

## СЕМЬ ДНЕЙ В ГААГЕ

В октябре прошлого года Чувашский национальный Конгресс (ЧНК) принял решение о вступлении в Организацию Непредставленных Народов и Наций (UNPO). Цель, которую при этом ставил ЧНК, была отражена в его заявлении: «В ОННН чувашский народ, третий по численности из коренных народов Российской Федерации, видит возможность защиты своего неотъемлемого права на самоопределение, признание суверенитета Чувашской Республики и один из путей информировать международные организации и мировую общественность о своих политических и национально-культурных устремлениях.

В свою очередь Чувашский национальный Конгресс через структуры ОННН хотел бы получать информацию о других непредставленных нациях и народах, приобрести опыт международного сотрудничества и участвовать в выработке общих принципиальных позиций наций и народов в процессе утверждения ими культурной идентификации, отстаивания основных гуманитарных и экономических прав и достижения независимости».

Согласно статье 7 Устава ОННН были также подготовлены следующие материалы: 1) Краткая этническая история чувашского народа; 2) Документы, подтверждающие, что именно ЧНК является организацией, способной полно представлять интересы чувашской нации, объединяя её на принципах возрождения, консолидации и развития; 3) Документальное подтверждение того, что ЧНК придерживается 5 основных принципов ОННН: признание права на самоопределение для всех наций и народов; приверженность международно признанным стандартам прав человека; следование принципам демократии и отрицание тоталитаризма и религиозной нетерпимости; использование ненасильственных средств и отрицание терроризма как политического метода; защита окружающей среды. (В резолюциях и обращениях ЧНК, принятых 8–9 октября, все эти принципы так или иначе нашли свое отражение).

Все эти документы согласно решению ЧНК были вручены руководящим органам ОННН через посредство её Председателя д-ра Линнарта Мялля. И из штаб-квартиры ОННН (Гаага) пришло в Чебоксары официальное приглашение для участия в работе 3-й Генеральной Ассамблеи.

В мире существует около 5000 наций и народов и всего лишь несколько сотен государств, из которых только около 170 государств представлены в Организации Объединенных Наций. Многие нации и народы ведут многолетнюю борьбу за обретение своей родины, реализацию своих экономических и политических прав, утверждение и развитие своей национально-культурной самобытности. Фундаментальные права человека для этих общностей также нарушаются. Некоторые из этих групп живут в оккупации либо в условиях изгнания, другие являются этническими меньшинствами или гражданами второго сорта на земле своих предков. Большинство из этих наций и народностей изолированы в своей борьбе и не могут выйти на международное сообщество, где их голос был бы услышан.

ОННН – это организация наций и народов, которые пока не получили международного признания. Она была учреждена самими народами в феврале 1991 года во Дворце Мира в Гааге (Королевство Нидерланды) для отстаивания своих интересов. ОННН является неприсоединившейся организацией, которая предлагает ненасильственные программы и решения, обеспечивает международный форум, а также информационные, исследовательские и обучающие службы народам, чьи проблемы и нужды не доходят до существующих международных организаций (включая соответствующие структуры ООН в Женеве и Нью-Йорке).

Позиция ОННН, поддержанная международным правом, заключается в том, что права человека, включая право народов на самоопределение, не является исключительно внутренним делом, регулируемым законодательством отдельных государств. ОННН будет обеспечивать всеобщую поддержку всем нациям и народам, которые длительное время ощущали себя одинокими в своей борьбе.

Сам термин «непредставленные нации и народы» имеет широкое значение. Сюда могут быть отнесены народы, живущие в оккупированных странах, федеративных государствах, коренные народы, этнические и культурные большинства или меньшинства, колонизированные народы.

На январь 1993 года в ОННН входило 26 действительных членов и свыше 30 членов-наблюдателей. Действительными членами организации были: Абхазия, аборигены Австралии, аче (о. Суматра), ассирийцы, Бугеквилль, белау, Чеченская Республика, Читтагонг Хилл Трэкс (народ джума в Бангладеш), Кордильера (Филиппины), крымские татары, Восточный Туркестан (уйгуры), греки Албании, тюрки Ирака, Курдистан, Республика Косово (бывшая Югославия), Южные Молукки, марийцы (Всемарийское собрание), Тайвань, Тибет (правительство Тибета в изгнании), Татарстан, Западное Папуа, Занзибар.

Четыре прежних члена – Армения, Эстония, Грузия и Латвия – обрели полную независимость и были приняты в ООН. Согласно Уставу ОННН эти государства сохранили за собой статус членов поддержки без права голосования.

География расселения наций и народов, входящих в ОННН, весьма обширна: Аляска, Северная Америка, Центральная Африка, Индонезийский архипелаг, Индия, Юго-Восточная Азия, Кавказ, Восточная часть Европы, Австралия, Южная Америка. Генеральным секретарем ОННН является д-р Майкл ван Валт ван Прааг.

...Наш полет от Москвы до аэропорта Схипхол (Амстердам) занял три часа. Летели вместе с Ксенофонтом Сануковым, делегатом от Всемарийского народного собрания. В аэропорту нас встретил д-р Мехмет Тютюнджю, с которым мы быстро нашли общих знакомых в Чувашии и Татарстане. Никаких формальностей при прохождении таможенного (его фактически нет) и паспортного контроля. Огромный аэропорт и идеальный порядок во всем.

Садимся на поезд и едем в сторону Гааги. Потянулись зеленые поля, на которых пасутся овцы, коровы. То тут, то там – ветряные мельницы. И, конечно же, знаменитые каналы, тянущиеся вдоль полей. Центральный вокзал, Гаага.

Уже тогда возникло у меня ощущение, которое не покидало и потом, особой интернациональной атмосферы этого города. Люди, снующие туда-сюда, самых разных национальностей. Недаром, очевидно, местопребыванием штаб-квартиры ОННН стал этот деловой, в то же время тихий и спокойный город. Я бы определил: это состояние города как естественный и дружелюбный интернационализм. Да и само общение во время 3-й Генеральной Ассамблеи, когда в течение часа приходилось общаться и с североамериканским индейцем из племени куютлингит, делегацией батва из Руанды, представителями Восточного Тимора, тибетцами, восточнотуркестанцами, ассирийцем, сенатором из Соединенных Штатов Джоном Нимродом и другими, поддерживало в тебе чувство братства и солидарности.

В работе 3-й Генеральной Ассамблеи участвовало более 50 делегаций действительных членов, членов поддержки и наблюдателей. В ходе работы и анализа руководящим комитетом ОННН было представлено к принятию в число действительных членов еще тринадцать народов: батва (Руанда), Восточный Тимор (маубере), чуваши, мапуче (Чили, Аргентина), ингерманландцы, коми, удмурты, огони, санджак (мусульмане бывшей Югославии), карени (Бирма), Нагалэнд (Индия, Бирма, Китай), сканиа (Южная Швеция), Халистан (сикхи Индии). Как определяет Устав ОННН, «участие в организации открыто для всех наций и народов, не представленных в ООН...»

3-я Генеральная Ассамблея приняла решение о принятии новых членов. День 19 января 1993 года может быть записан красной строкой в новейшую историю чувашского народа. Был также избран новый председатель Ассамблеи, им стал известный журналист-международник Эркин Алптекин (родом из Восточного Туркестана) .

Специальной темой дискуссии Генеральной Ассамблеи стала «Право на самоопределение в связи с правами человека, движением к демократии и защитой окружающей среды». Были определены правовые и политические аспекты реализации этого права в современной ситуации, когда речь идет не только о деколонизации в классическом смысле, а о фундаментальном и неотъемлемом праве всех народов. Материалы для дискуссии были представлены в докладах Генерального секретаря д-ра Майкла ван Валт ван Праага и его Высочества принца Ханса Адама II, главы правительства Лихтенштейна.

Особенно любопытным было последнее выступление, так как Его Высочество уже внес предложение на 46-й сессии Генеральной Ассамблеи ООН (Нью-Йорк, 1992 г.) о подписании конвенции по праву на самоопределение. Исходя из собственного опыта реализации этого права, Лихтенштейн считает, что международное сообщество и неправительственные организации в ближайшее время должны будут практически заняться разработкой эффективного механизма реализации права на самоопределение. Мы являемся живыми свидетелями того, как меняется карта мира и этот процесс будет идти несмотря на известную однобокость политики отдельных государств, которые, как правило, имеют склонность защищать статус-кво. Но мир меняется стремительно, и само право на самоопределение «существует для того, чтобы позволить народу, а не государствам, независимо определить свой политический статус».

Выступлениями членов ОННН о ситуации своих народов, наблюдателей, а также гостей – лорда Энналса, члена Палаты Лордов Британского парламента, бывшего министра иностранных дел и обороны; миссис М. Кэрриган Макгуир, лауреата Нобелевской премии мира, президента Совета Мира (Белфаст); д-ра Дж. А. Манусами, президента Республики Южные Молукки; Его высочества Тенгку Хасап ди Тиро, президента фронта освобождения аче; известного американского дипломата Джона Макдональда – было подтверждено, что право на самоопределение объективным ходом истории выдвигается в число важнейших проблем, стоящих перед международным сообществом, между тем практическая и мирная реализация этого права часто отсутствует. Полная страданий, порой человеческих жертв панорама конфликтов – от Абхазии до островов, входящих в состав Индонезийской империи, от экологической агрессии транснациональных компаний Шелл и Шеврон-Ойл против народа огони в Нигерии до «мирной» языковой и культурной политики ассимиляции удмуртов, чувашей, мари и других народов севера и востока европейской части Российской Федерации, этноцид северо-американских индейцев, других меньшинств – США – все это нашло отражение в выступлениях и позволило ощутить горячий пульс мира. Не стоит в стороне от национально-освободительных процессов и Европа. Бретонцы, южные тирольцы, цыгане, народы бывшей Югославии, фризы в самих Нидерландах заявляют все чаще о своих политических, социально-экономических и культурных правах.

...Гаага останется в памяти яркими зимними впечатлениями (хотя по нашим понятиям все скорее напоминало раннюю весну. Тепло и яркое солнце, зелень газонов, яркие цветы в витринах ма-газинов). Это и величавый дворец Королевы Нидерландов Беатрис, берег Северного моря, обилие велосипедистов на улицах, старинные двух-трехэтажные дома, узкие улочки и прием у бургомистра Гааги д-ра Хавермаса, и общее ощущение взаимопонимания, братства и солидарности. Как хорошо сказал Менелаос Целиос, один из помощников Генерального секретаря, делегат от греческого меньшинства в Албании: «ОННН –это демократическая организация непредставленых народов, но члены ОННН представляют свыше 100 миллионов человек. Еще важнее то, что все вместе мы можем гордиться миллионами лет истории, культуры и традиций».

А. ХУЗАНГАЙ.

*«Советская Чувашия», 26.02.1993.*

## Атнер ХУЗАНГАЙ: «ДО ТЕХ ПОР, ПОКА КУЛЬТУРА СМОТРИТСЯ ПРОСТО В ЗЕРКАЛО, ОНА НИЧЕГО, КРОМЕ СЕБЯ, НЕ ВИДИТ»

**– Вступление Чувашского национального конгресса в Организацию непредставленных наций и народов – это внешний символ, «ритуал» (скажем так, желание отметиться), ваша воля создавать историю или попытка оформить некий темный трепет призвания, который ощущает, если верить чувашской литературе, в глубине своей души народ?**

– Как записано в Уставе ОННН, «все нации и народы имеют право на самоопределение, в силу которого они свободно определяют свой политический статус и выбирают пути экономического и культурного развития», и в то же время мы, чуваши, как народ, не имеем реальной возможности реализовать свое право на самоопределение в условиях нынешней политической системы РФ. Мы должны были выйти на другой уровень обсуждения наших проблем. Таким международным форумом, где существуют «истинное уважение и понимание собственного и чужого своеобразия», и является Организация непредставленных наций и народов. Через ОННН и её структуры мы можем заявлять о себе, своем существовании мировому сообществу. Я думаю, что уже давно настала пора (мехел çитрĕ) выйти из некоего заколдованного круга сугубо чувашского бытия, ощутить свою «неодинокость» в мире. До тех пор, пока культура смотрится просто в зеркало, она ничего, кроме себя, не видит. За многие столетия чувашской истории, как бы то ни было, наш народ впервые признан субъектом международного права.

Что касается внешнего ритуала, то решение о нашем принятии в ОННН было объявлено 19 января, в первый день работы 3-й Генеральной ассамблеи, Касуром Лоди Гьяри, специальным послом Его Святейшества Далай Ламы XIV, президентом международной кампании в поддержку Тибета. Вместе с ЧНК, в члены ОННН были приняты батва, Восточный Тимор, мапуче, ингерманландцы, коми, удмурты, санджак, огони. В последний день работы Генеральной ассамблеи состоялась церемония подписания Устава-Соглашекия ОННН. В зале заседаний Провинциехюис (Дома Провинций) был водружен государственный флаг Чувашской Республики.

**– Это не крик о помощи? Исчезновение нашего древнейшего языка было бы преступлением перед человечеством. Просьба занести «трудолюбивый, скромный» народ в некую «Красную книгу исчезающих народов», думаю, говорит именно об отчаянии.**

– Почему же крик? Во-первых, это закономерная реализация решения Чувашского национального конгресса, как высшего представительного собрания чувашской нации, о вступлении в эту организацию. Во-вторых, это открытие новых горизонтов, новых возможностей по обмену опытом и информацией, обучению процедурам, которые используются в международной практике при осуществлении права на самоопределение. Но ОННН – не «Красная книга народов», это действующая международная неправительственная организация, которая ставит своей целью защиту интересов «непредставленных» народов перед международным сообществом ненасильственными методами, через комиссию по правам человека и подкомиссию по защите меньшинств и предотвращению дискриминации ООН. Понятие «непредставленные народы» трактуется широко. Это народы, которые «лишились или могут лишиться родины, культурной целостности или возможности самим решать свою судьбу. Некоторые в отчаянии прибегают к насилию, другие живут в изоляции, с болью наблюдая за исчезновением своей культуры, многие из этих народов стали жертвой нарушения прав человека, насильственной ассимиляции и даже геноцида. Некоторые народы, лишенные стран, живут в изгнании; другие стали этническим меньшинством, гражданами второго сорта на земле своих предков... Большинство этих народов чувствует себя одинокими в своей борьбе».

Как видишь, многие из этих признаков видны и в ситуации с чувашским народом. В такой ситуации возможно и проявление этнического отчаяния у некоторой части людей. Но, познавая чужой опыт, опыт других народов, по-иному оцениваешь и себя, по-другому осознаешь собственно «чувашский вектор». И, что еще очень важно, учишься излагать, представлять «чувашскую идею» на том понятийном языке, который доступен многим. Мы привыкли обсуждать наши чувашские дела между собой или с нашими извечными оппонентами – подголосками российских демократов. Как правило, это обычный российский бестолковый уровень дискуссии.

Генеральная ассамблея ОННН – это совсем другой воздух. Ты чувствуешь, что тебя понимают, хотят понять. Одинаковое уважение ко всем участникам, доброжелательность и готовность помочь. Такому общению тоже надо учиться.

**– Активный интерес к поэтам «разрыва цепи» – М. Сеспелю, Г. Айги – у вас был особенно заметен к доперестроечную пору и в первые годы перестройки. В последнее время «воля к свободе», как мне кажется, у вас постепенно стала переходить в «бегство от свободы». Консервативность – это сознательное самоограничение или в этом образе мысли есть внутренняя правда? Какому из инстинктов – художническому, значит, революционному, или консервативному – Гаага влила силы?**

– Я не привык рассуждать о своих действиях в подобных терминах. Можно было бы говорить об этом более буднично и приземленно, а не на языке философских категорий. Но принимаю «правила игры».

Действительно, я был гораздо более свободен прежде, лет 7–8 тому назад. Скорее всего, это связано с изменением основного рода занятий: был избран депутатом ВС ЧР, участвовал в процессе становления и организации разных общественных объединений (ДДР, ЧАП, ЧНК). Сама жизнь моя стала более прилюдной в череде мероприятий, заседаний, собраний и т. д. Такой образ жизни, действительно, делает человека менее «свободным».

Но я полагаю, что свобода – это, скорее, внутреннее свойство человека, нежели внешние проявления его поведения. Свобода мысли и мироощущения, например. Надеюсь, что эти качества я не потерял. Но, с моей точки зрения, это не означает всеядность. Сознательное самоограничение просто необходимо. Усилия надо уметь концентрировать в нужном месте, в нужное время.

Поездка в Гаагу дала новый импульс моим давним европейским и космополитическим устремлениям, если угодно.

**– Кажется, мы становимся свидетелями еще одного разочарования – на этот раз разочарования вашего поколения. Вы, по-моему, верили, прежде всего в силу закона, больше в букву, чем в дух. Отсюда же, скажем, бесконечный треп о языке, тогда как для спасения национального куда важнее образ мысли и чувствования, представленный в искусстве, чем запасники мертвых слов – словари. И глубинная причина того, что законы не работают, конечно же, в вас самих, а не на уровне профессионализма парламента. Вы принимаете законы, но у вас нет механизмов для их реализации, ставите цели, но нет социального пространства для их осуществления (нет социального полигона), вроде бы есть идеология, но нет опоры в массах, есть политика, но нет политической практики и т. д. Вступили в ОННН, т. е. решились идти к ИНОМУ, но не определили своего отношения к тому, что ЕСТЬ.**

– Я говорю только о себе, так как не смею делать заявление от имени поколения. Я никогда не был законником в том смысле слова, как ты это определяешь. А о Духе и мироощущении, о чувашском начале и чувашской духовности я начал говорить и писать, по крайней мере, лет 11–12 тому назад. Ты предъявляешь мне претензии как к художественному критику, но я уже давно не занимаюсь этим. Относительно законов, которые не работают, скорее всего, ты прав. Ведь социум и культурное «поле» с собственно чувашскими координатами планомерно разрушались на протяжении, по крайней мере, полувека. Впрочем, и раньше – в XIX в.– начале XX в.– с большим сомнением можно было говорить о существовании чувашского социокультурного пространства. И тогда были и сейчас есть одиночки, отдельные личности, со своими идеями, и есть народ (хура халӑх – в самом высоком смысле), который живет своей жизнью и не хочет социально, политически организовываться, объединяться вокруг какой-то идеи. Вступление в ОННН и проблема социальной психологии чувашского народа – разные вещи, я не улавливаю их сзязи.

**– Изменила ли Гаага ваш угол зрения на чувашскую действительность? Случайна ли фраза, брошенная во время встречи ТВ–АУ, что чувашский народ еще не достиг статуса государства? Не пора ли заново поднять вопрос о подлинном, истинном положении чувашского народа в мире? В философии, которую вы исповедуете, экзистенциализме, бытие человека – это забота, забота о своем действительном самоосуществлении. Не пора ли понять чувашский народ, выражаясь на языке этой философии, в её аутентичной экзистенциальной потенциальности, т. е. осуществить выбор, открывающий качественно новые перспективы, определить свое бытие в соответствии с выбором?**

– Общаясь в ходе 3-й Генеральной Ассамблеи с представителями самых разных народов – североамериканскими индейцами – тлингигамн, батва из Руанды, мапуче из Южной Америки, аборигенами из Австралии, бретонцами, тибетцами, аче с острова Суматра, уйгурами из Восточного Туркестана и многими другими, которые прошли свой исторический путь, еще раз убедился в многообразии мира, его реальной и живой полиэтничности. Но то, что объединяет всех, – это стремление к свободе и право всех определять свою судьбу. Видные эксперты, юристы, дипломаты, выступавшие в качестве гостей на Ассамблее, были единодушны в том, что осуществление прав всех народов на самоопределение – один из наиболее важных вопросов современности. Международные организации, включая ООН, не должны его отделять от вопросов нарушения прав человека, следования принципам демократии и сохранения окружающей среды.

Относительно чувашской государственности могу лишь повторить, что полноценного государства у нас пока, действительно, нет. Оно находится лишь в процессе становления, и этот процесс будет идти даже вопреки явному сопротивлению власть предержащих, которые никак не могут избавиться от старого комплекса относительно федеральных властей. Казалось бы, уж можно осознать, что сегодня мы живем в постимперском пространстве с новыми социально-политическими и экономическими реалиями.

В этой ситуации, конечно, надо делать свой выбор – выбор в пользу своего родного народа. И постараться сделать все, что в наших силах, для его самоосуществления.

**– По-моему, нельзя выработать принципы исторической деятельности, объективные критерии, дающие адекватную ориентацию в истории, в главных направлениях её движения по пути прогресса и свободы, пока в Чувашии не вступит в силу новый тип сознания. Его характеристики: 1) сознательное историческое творчество, 2) волевой компонент, направляющий знание на достижение определенных целей, заставляющий видеть действительность в перспективе, в изменении, 3) выход за пределы непосредственного окружения, ближайшего порядка вещей для подлинного осмысления бытия. Чтобы быть открытым истине, нужен определенный настрой. Его у нас пока нет. Как вы представляете свободное выявление волевой энергии? Поднимется ли вера в народ до подвижнических высот?**

– Вероятно, все это так и есть. Нам надо отказаться от унизительного ощущения, что кто-то все решает за нас, а мы лишь пребываем на обочине истории и не в силах ничего изменить. От усилия каждого отдельного человека, пусть, на поверхностный взгляд, его даже «бесполезного служения» народу, зависит очень многое. Мне хотелось бы,

чтобы в индивидуальном чувашском сознании появились элементы протестантской этики, как их определял М. Вебер. Это — личный аскетизм, деловая честность, обязательность, самореализация в профессии. В принципе, такой новый тип личности вписался бы в традицию чувашского индивидуализма и развил бы энергетические, волевые стороны характера. Пока же наш индивидуализм, может быть, проявляется лишь в пассивном протесте неприятия, а не в активной созидательной деятельности. Мы боимся глотнуть воздуха свободы. Общероссийская атмосфера неразберихи, неустроенности, неизжитого мессианства сказывается и на нас, чувашах. Мы хотим или мечтаем в глубине души, что достигнем блага и согласия каким-то волшебным рывком. Это извечный утопизм. Раньше он имел коммунистическую подоплеку, сейчас — якобы демократическую окраску. Такой социальный утопизм в корне противоречит чувашскому менталитету. И чем раньше мы избавимся от российских социальных болезней, тем лучше будет для нас.

И первый шаг, который мы сделали на пути международного признания, вступив в ОННН, будет нам подмогой.

Беседовал Ю. ЯКОВЛЕВ.
*«Чăвашьен», 1993, №7.*

## ТРЕТЬЕ ВОЗРОЖДЕНИЕ ЧУВАШСКОГО НАРОДА

**(Из доклада, прочитанного президентом ЧНК Атнером ХУЗАНГАЕМ на 5-й Международной конференции по Центральной Азии, университет Висконсин-Мэдисон, США, 15 апреля 1993 г.)**

В истории чувашского национального движения, всего чувашского национального возрождения можно выделить три этапа. Во-первых, это культурно-просветительский, «яковлевский» период — с 1971 г. по 1905 г. Это было время деятельности великого просветителя чувашского народа Ивана Яновлева (1848 — 1930), создателя новочувашской письменности и основателя Симбирской чувашской учительской школы, которая подготовила первое поколение чувашской интеллигенции. Учителей, священников, музыкантов, ученых, писателей, поэтов. Иван Яковлев осуществлял свою миссию под знаком христианского просвещения, пытаясь реализовать три основные идеи: 1) просвещение чувашей светом Евангелия (перевод книг Священного Писания на чувашский, богослужение в церквях на родном языке, издание художественной и иной литературы); 2) обучение в школе на чувашском языке; 3) путем просвещения слить чувашей с русскими, в единую народность.

Несмотря на то, что эти же идеи лежали в русле официальной идеологии Российской империи («самодержавие, православие, народность»), их осуществление позволило Ивану Яковлеву создать систему чувашских школ во всех местах проживания чуваш, что привело к появлению значительного слоя образованных людей с новым пониманием задач чувашской нации, возможностей её культурного развития. Хотя само просвещение было сугубо христианским (с точки зрения русского православия), оно дало, как ни парадоксально, толчок процессу чувашского национального возрождения. Иной возможности для чувашского просвещения в те годы просто не было. И постепенно этот процесс привел к распространению собственно политических настроений среди чувашской молодежи, в основном тех же учащихся Симбирской чувашской учительской школы.

Во второй период (1905—1920 гг.) происходит формирование первых политических организаций среди чувашей. В разные годы этого периода преобладали разные идеологии. Вначале это была национально-демократическая идея, чуть позже — социалистически-революционная, накануне и после 1917 г. — большевистски-революционная. При этом между ними не было резких границ. Самой влиятельной политической организацией (до 1918 г.) среди чувашей была партия чувашских социалистов-революционеров (эсеров). В 1906 г. около Симбирска прошел первый чувашский общенациональный съезд. В Казани начинает издаваться первая общенародная чувашская газета «Хыпар». Выдвигается задача объединения всех сил в политической борьбе за национальное освобождение. Наиболее видными чувашскими политическими деятелями второго периода чувашского национального возрождения были эсеры Г. Алюнов (1876 —1921), Т. Хури (Николаев) (1878— 1918), Метри Юман (Д. Петров) (1885—1939), С. Николаев (1880—1975), Г. Титов (1885—1919), Г. Комиссаров-Вантер (1883—1969), историк и этнограф, профессор Н. Никольский (1878—1961), эсер, затем большевик, один из руководителей Чувашской автономной области Д. Эльмень (1885—1932), организатор чувашских военных организаций, один из создателей Чувашской автономии А. Краснов (1890—1952).

Основные моменты развития чувашского национального движения этого периода, идеология и цели движения были обобщены в работах: Г. Комиссаров-Вантер «Может ли чувашский народ иметь свое будущее?», Уфа, 1918; Мётри Юман «Чувашский народ в борьбе за национальное освобождение», Казань, 1921; А. Краснов «От февраля к октябрю», Чебоксары, 1931, и других.

Наиболее открыто, в виде национально-культурной программы действий и создания органов, которые могли бы выражать общенациональную волю чувашского народа, вплотную подойти к идее самостоятельной чувашской государственности, эти взгляды чувашского национального движения были выражены на Общечувашском национальном съезде (Симбирск, 20—28 июня 1917 г.), а также других — чувашских крестьянском, военном, учительском съездах, происходивших примерно в течение одного года — с лета 1917 г. по лето 1918 г.

Н. Никольский в это же время избирается председателем Собрания малых народностей Поволжья (участвуют чуваши, 1 мари, удмурты, эрзя и мокши). То есть, уже тогда была осознана необходимость солидарности народов Урало-Поволжья (башкир, мари, удмуртов, мордвы, татар и чуваш) в общей борьбе. Этот нормальный буржуазно-демократический процесс среди чувашей под лозунгами «земли и свободы», «национального самоуправления», «развития образования на чувашском языке», «решения национально-культурных задач», которые пусть по разному понимались разными политическими партиями и лидерами национального движения, но был прерван приходом большевиков к власти в октябре 1917 года.

Несмотря на это, и после 1917 года, когда происходило становление чувашской советской государственности, идеи национально-культурного строительства проводились большевиками в жизнь примерно до 1929 г., они их унаследовали или заимствовали от других партий, во всяком случае, признавали хотя бы в теории право народов России на свободное самоопределение, вплоть до отделения и образования самостоятельного государства (Декларация прав народов России, принятая Советом народных комиссаров 15(2) ноября 1917 г.). После утверждения режима тоталитарного общества, массовых репрессий 1937—1938 гг. против национальной интеллигенции и общественных деятелей свободное обсуждение национальных проблем становится невозможным, понятие «права человека» становится запретным, а понятие «право народов на самоопределение» грубо искажается коммунистическими идеологами, и на практике реализуется теория сближения и слияния наций в советский народ.

Годы 1986—1987 — годы перестройки в Советском Союзе — стали началом нового периода — 3-го национального возрождения чувашского народа.

В чувашском обществе возрос интерес к собственной настоящей, а не фальсифицированной советскими историками истории чувашского народа, стали всплывать из тьмы прошлого запретные или «забытые» имена деятелей национальной культуры, публиковаться их работы, мы начали понимать значение идей и деятельности политических лидеров национального движения, которые были упомянуты выше. Остро встала проблема родного языка.

Точкой отсчета для чувашской истории уже перестал быть 1917 год, среди научной и гуманитарной интеллигенции укрепляется сознание глубины нашего исторического пути длиной, по крайней мере, в 1000 лет, начиная от периода расцвета государства Волжской Булгарии. Мы стали понимать, что булгаро-чувашский узел в веках соединяет оси «Восток–Запад», «Север–Юг» и, несмотря на все унижения, которые пережил чувашский народ после разрушения его государственности в составе империй, он выжил, сохранил свою душу, язык, культуру, и сейчас он тоже хочет жить свободным.

Сначала (во время перестройки) все эти вопросы обсуждались, в основном, с точки зрения духовного и культурного возрождения чувашской нации и были связаны с такими темами, как «роль Ивана Яковлева в просвещении», «влияние христианства (русского православия) на чувашскую культуру», «литературное наследие», и поэтому они получали свое оформление как движения в поддержку перестройки, национально-культурные общества, которые обращались к забытым народным традициям, обычаям, ставили перед собой культурные цели, но при этом выступали с резкой критикой местной коммунистической партийной бюрократии. Антикоммунизм и антитоталитаризм в разных проявлениях объединяли тогда «демократов» и «националистов», потому что все разделяли общедемократические ценности – свободы слова свободы вероисповедания, права получать и распространять любую информацию, участвовать в политической деятельности, права на здоровую окружающую среду и т д. – которых были лишены граждане Чувашии.

Но уже тогда было понятно и то, что невозможно проводить нормальную культурную языковую политику внутри республики, а также внешнюю национальную политику по отношению к чувашской диаспоре (численностью около 1 млн чел.), не имея реальной экономической базы, источников финансирования со стороны государства. Таким образом, понятие «национальное возрождение» стало переводиться в экономическую, политическую и юридическую плоскость. Политическим механизмом реализации этих задач могли стать свободные демократические выборы с тем, чтобы были избраны такие народные депутаты, которые смогут поставить эти цели перед Верховным Советом, получат широкую общественную трибуну для выражения своих взглядов, «чувашской идеи» – идеологии национального движения, а в дальнейшем будут стараться разрабатывать и принимать такие законы, которые позволят реализовать чувашскому народу право на самостоятельное определение в условиях полной свободы своего внешнего и внутреннего политического статуса, право на самостоятельное экономическое, социальное и культурное развитие (в соответствии с международными пактами по правам человека).

Весной 1990 г. состоялись выборы в Верховный Совет Чувашской АССР в относительно демократических условиях (хотя тогда коммунистическая партия по-прежнему владела монополией на средства массовой информации и рычагами управления; других политических партий на тот момент не было). В противовес коммунистической партии был сформирован блок «Демократическая альтернатива», куда частично входили и активисты национального движения. В результате народными депутатами ЧАССР – членами Верховного Совета было избрано 25–30 человек, стоящих на национально-демократических позициях.

Летом-осенью 1990 г., во время активной дискуссии о проекте Декларации о государственном суверенитете Чувашской Республики и Законе о языках в ЧР (согласно которому чувашский язык должен был иметь статус государственного, а русский язык – статус языка межнационального общения на территории республики), инициаторы ЧАП (Чувашской партии национального возрождения) провели акции лоббирования Верховного Совета ЧАССР во время 2-ой сессии в виде митингов, пикетов, а также голодовки 4 активистов. Это позволило провести основные положения Декларации и Закона о языках, стало крупным политическим событием того времени, которое имело значительный общественный резонанс.

В марте 1991 г. был проведен 1-й съезд ЧАП, на котором были приняты Устав и Программа. ЧАП старалась развить идеи чувашских социалистов-революционеров, использовать их в современной ситуации и в то же время активно использовала опыт национальных движений Балтии, соседнего Татарстана (Партия татарской национальной независимости «Иттифак»), Башкортостана (Башкирский народный центр «Урал»), других национальных движений в регионе Урало-Поволжья, с которыми были установлены контакты. Принимались заявления по поводу трагических событий в Тбилиси в апреле 1989 г., Литве – в январе 1991 г. и др.

Новая волна политической активности ЧАП связана с августовским путчем 1991 года. ЧАП была единственной политической организацией, которая сразу же приняла политическое заявление, осуждающее антиконституционный переворот в Москве, и оценила его как попытку руководителей КПСС, КГБ и ВПК сохранить развалившуюся тоталитарную советскую империю, как выступление против демократии и воли народов к свободе.

В Чувашской ССР был введен институт президентской власти. В октябре–ноябре–декабре 1991 г. проходили президентские выборы, и ЧАП приняла в них активное участие. Не имея, по сути, организационных структур и источников финансирования, испытывая жесткий прессинг со стороны прокоммунистических сил и властного официоза, молодая политическая партия уверенно, спокойно, с сознанием правоты «чувашской идеи», провела избирательную кампанию. Это был полезный политический опыт, который ЧАП будет использовать в возможных досрочных выборах народных депутатов в Верховный Совет и новых выборах Президента республики.

В своей программе ЧАП отстаивает:

развитие самостоятельной чувашской государственности; экономический и политический суверенитет Чувашской Республики;

институт президентской власти, переход депутатов к профессиональной парламентской деятельности и реформу политической системы республики путем ликвидации Советов на уровне села, поселка, района, города;

многообразие форм собственности (в том числе и частной, исключая частную собственность на землю);

введения института гражданства в республике;

отношения с российским центром (Россией) строятся на основе двустороннего договора с учетом равноправия сторон, а также с учетом взаимовыгодных экономических и национальных интересов; право Чувашской Республики на самостоятельную внешнеэкономическую деятельность;

обеспечение экологической безопасности граждан;

гарантии со стороны государства в отношении свободного культурного и духовного развития чувашской нации и политику культурной автономии относительно эрзи, татар и русских, компактно проживающих в республике.

ЧАП стремится стать партией парламентского типа, активно участвуя в избирательных кампаниях. Также проводит акции прямого гражданского действия (митинги, пикеты). Члены партии совместно отмечают национальные памятные дни и праздники. Члены партии распространяют экономическую, историко-политическую, демографическую и иную информацию о чувашах.

Социально-профессиональный состав ЧАП, в основном, представляет гуманитарная интеллигенция, предприниматели, юристы, студенты, рабочая и сельская молодежь, учителя. Актив партии составляет 200–300 человек. Количество сторонников составляет несколько тысяч человек. Возглавляет партию Высший Совет из 11 человек, возглавляемый председателем. В 1992 году председателем был юрист Николай Лукианов. На 3-м съезде ЧАП в марте 1993 г. он был вновь избран председателем. ЧАП издает газету «Аталану».

Важнейшим событием 1992 года стало проведение Чувашского национального конгресса в октябре. Он собрал более 1000 делегатов от

чувашей, живущих за пределами Чувашской Республики, в ближнем и дальнем зарубежье. ЧНК учрежден в качестве высшего представительного собрания чувашской нации. Его основными лозунгами стали возрождение, развитие и национальная консолидация чувашского народа. ЧНК стремится выражать социальные и национально-культурные интересы всего чувашского народа и выступает за соблюдение прав и свободу личности в соответствии с нормами международного права.

ЧНК смог поднять идею национального возрождения («чувашскую идею») на новый уровень, определив, с одной стороны, стратегию развития чувашской государственности (концепция Конституции Чувашской Республики, резолюция принципах Закона ЧР о гражданстве), реальное понимание суверенитета республики с точки зрения экономической, финансовой, разделения собственности (приватизации) и развития чувашского бизнеса (предпринимательства). С другой стороны, в решениях конгресса впервые в истории чувашского национального движения формируются задачи внутренней и внешней политики в области отношений с чувашской диаспорой, развития связей с международными негосударственными организациями для налаживания делового сотрудничества и информационно-культурного обмена. В частности. ЧНК принял решение о вступлении в ОННН (UNPO) и в январе 1993 г. уже участвовал в работе 3-й Генеральной Ассамблеи UNPO и был принят в качестве её полноправного члена. Позднее ЧНК, исходя из нынешней геополитической ситуации – развала Союза ССР, политической нестабильности и глубокого экономического кризиса в России – активизировал контакты с национальными организациями Урало-Поволжья и поддержал идею создания конфедерации народов Урало-Поволжья на основе союза наиболее влиятельных национально-общественных организаций татар, башкир, чуваш, мари, эрзя и мокша, удмуртов.

Эта конфедерация в будущем могла бы стать межгосударственной ассоциацией суверенных республик наподобие ЕС (Европейского Сообщества). Для этого имеются все исторические, экономические, экологические и этнические основания. Наши народы всегда хорошо понимали друг друга и столетиями вместе сопротивлялись угнетению, сохраняя добрососедские отношения. Конфедерация народов Урало-Поволжья помогла бы оперативно решать вопросы с диаспорой, которые остро стоят перед каждым из шести народов, а также совместно легче было бы защитить свои национальные интересы от непродуманных политических действий и полуколониальной экономической политики российского «центра».

Идея «Идель–Урал», которая в начале века горячо обсуждалась, жива, и сейчас есть предпосылки для её реализации в новых условиях и с новыми задачами, среди которых самая главная – обретение народами независимости и свободы. В этом сообществе могли бы органично сочетаться как европейская, так и центрально-азиатская ориентация при развитии экономических, торговых и культурных связей.

Исходя из своего пограничного положения по отношению к славянскому миру и тюркской ойкумене (миру), регион Урало-Поволжья был бы своего рода мостом от Востока к Западу, с Севера на Юг.

Доклад был представлен на английском языке .
*«Чăвашъен», 1993, №19.*

## МĚНЛЕРЕХ ЯНРĚ ПИРĚН САСĂ ТĚНЧЕРЕ?

Нумаях пулмасть «Дружба народов» журнал редакцийĕ мана кăсăк ыйтусем пачĕ. Ыйтăвĕсем çаплараx:

1) СССР саланса кайнă хыççăн сирĕн культурăра (литературăра) тата шухăш-туйăмра мĕн улшăнчĕ, творчествăра çĕнĕ туртăмсем палăрчĕç-и?

2) Хавăрăн культурăна эсир халĕ мĕнле шайпа – СНГ, тĕнче, Раççей шайĕпе е урăхла шайпа çыхăнтаратăр?

3) Чăваш культурин нацисем хушшинчи çыхăнăвĕсем пирки мĕн калама пултаратăр?

Хуравлама ансатах пулмарĕ. Чăнах та, халĕ эпир пачах урăх тĕнчере пурăнатпăр. Мĕнле тĕнче темелле-ха ăна? Советсем хыççăнхи, импери арканнă хыççăнхи темелле-и е мĕнле те пулин урăларах? Унччен эпир, чăвашсем, «çынсен историлле çĕнĕ пĕрлĕхĕн – совет халăхĕн» пĕр пайĕ шутланнă. Анчах империсен самани те иртет, вăйпа пĕрлештернĕ территорисем каллех уйрăлаççĕ, çавна май, иртнĕ 5 çул хушшинчи аталану кăтартса панă тăрăх, умчченхи ССР Союзĕн нацийĕсемпе халăхĕсенчен те пĕрлехи совет халăхĕ пулса çитеймерĕ. Анчах пирĕн ăнлавра, хамăра тыткаланинче «советла туйăмсем», урăхла каласан, ирĕкрех пулма чăрмантаракан туйăмсем сÿнсех çитмен-ха.

Çапах та «пĕрлехи совет культурине» партипе патшалăх аппарачĕ пулăшса пынипе идеологипе тачă çыхăнтарнă, çирĕп регламента пăхăнса тăракан, тĕнче культурин аталанăвĕнчен пач уйăрнă «совет культурине» йĕркелеме май килнĕ тесе çирĕплетме пулать. Анчах халĕ эпир пĕтĕмĕшле совет палăрăмне çухатрăмăр, кирек мĕнле пулсан та унăн лайăх енĕсем те пулнă вĕт-ха, мĕншĕн тесен «пĕрлехи совет культури» тенĕ чухне пирĕн пĕр-пĕрин хушшинчм çыхăнусем пулнă, нумай-и, сахал-и, анчах наци культурисем хушшинче хутшăнусем пулнах, халăхсем пĕр-пĕрне паллană, пĕлнĕ. Çав хушăрах пĕрлехи совет культурин талккăшĕ вĕçленни кĕтмен çĕртен пулмарĕ, çакă вăл пурнăç йĕркипе пулса иртрĕ. Мĕншĕн тесен вăл пĕр культура теприпе хуçаланни, пĕри пуç пулса, тепри ăна пăхăнса пурăнни çинче никĕсленсе тăнă, тоталитаризм идеологийĕпе хĕссе лартнă пулнă ăна, çавна май çав идеологирен урăхла шухăшлама юраман, экономика, политика тата культура тĕлĕшĕнчен нимĕнле ирĕклĕх те пулман.

Культура пĕлтерĕшне тĕрлĕрен хак параççĕ. Манăн вара çакна çеç палăртас килет: культура вăл пĕр-пĕр капăр, пуян япала мар, вăл çĕр-шыва экономика тата политика тĕлĕшĕнчен тивĕçлĕ шайра сыхланса юлма пулăшакан тĕп условисенчен пĕри пулса тăрать. Парижри искусствăсен, ал ăсталăх консерваторийĕн тата Вартон университечĕн (США) профессорĕ Бруно Люссато унăн çак уйрăмлăхĕсене палăртнă: культура тĕрлĕ ĕç патне туртăнма, тĕрлĕ япалала кăсăкланма пулăшать, тепĕр енчен, вăл интеграци пулăмĕсене çăмăллатать, пĕр-пĕринчен аякра тăракан идейăсене, ăнлавсене тата сăнарсене пĕр пĕтĕмлĕхе пĕтĕçтерет, çывăхлатать. Культурăна пахалах системисене тĕрлĕ шая хурса хаклаççĕ. «Çÿллĕ шайри» элитарлă культура тата «пĕчĕк шайри», çавăн пекех массăллă культура. Кирек мĕнле культурăна та аталантарма йывăр, çавăнпа та унăн шайне ларас тесен сахал мар вăй хума тивет: ăна аталантарма тата сыхласа хăварма укçа-тенкĕ, тĕрлĕ хатĕрсем кирлĕ.

Çапла вара, çитмĕл çул хушши совет империйĕн талккăшĕнче «аташса» çÿренĕ хыççăн чăваш культури хăйĕн тымарĕсем, хăйĕн çăл куçĕсем патне таврăнать. Эпир хамăра хамăр ăнланма пуçлатпăр, чăваш наци культурин пуянлăхне çĕнĕрен хаклатпăр. Çавна май эпир хамăр ÿсĕмсене 1917 çултан пуçласа хакламастпăр, пĕтĕм пăлхар-чăваш историне тĕпе хуратпăр. Историлле çак çул-йĕр вăрăмăшĕ сахалтан та 1,5 пин çултан кая мар. Пирĕн истори-культура пуянлăхĕнче виçĕ тĕп традици палăртма пулать. Пĕрремĕшĕнчен, 8–16-мĕш ĕмĕрсенчи пăлхар-мăсăльмансен искусство, чĕлхе, культура сийĕ («вăтам пăлхар самани» тенĕ тапхăр). Çак традиципе килĕшÿллĕн пăлхар-чăвашсене Вăтам Ази, Çывăх тата Вăтам Хĕвел тухăç йăли-йĕрки витĕм кÿнĕ.

Иккĕмĕшĕнчен, ку вăл чăваш халăх традицийĕ – авалхи чăваш тĕнĕ, халăх ÿнерĕ, сăмахлăхĕ. Çакă пĕтĕм чăваш культурин тĕп шăнăрĕ пулса тăрать, вăл ĕмĕрсем хушшинче сыхланса юлнă, чăвашсем хăйсен патшалăхне çухатнă хыççăн та сÿнсе ларман.

Тата виççĕмĕшĕ вăл – христианла çут ĕç традицийĕсем, вĕсене 19-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчен тытăнса, уйрăмах унăн 2-мĕш çуррине, тăван чĕлхепе – чăвашла пурнăçа кĕртсе пынă. 19-мĕш ĕмĕр вĕçнелле вара шăпах çак традици, тĕрĕссипе, чăваш тымарĕнчен татăлман йăлайĕрке, чăваш интеллигенцийĕн пĕрремĕш ăрăвне çитĕнтернĕ.

Пирĕн чăваш культурин тĕп тымарĕн вуллине эпир чĕрĕ йывăç пек

туйса тăма тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен вăл ку таранччен те чĕрĕ хунавсем парать, унăн турачĕсем хăватлăн çитĕнеççĕ. Эпир социаллă пурнăçпа культурăри куçăм тапхăрĕнче, тĕрлĕ улшăнусен вăхăтĕнче пурăннă чухне уйрăмах чи кирлине суйласа илме пĕлни, усăсăр салатса пĕтернĕ вăй-хала пухни, илемлĕх çинчен аса илни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакă пире историпе культурăн çĕнĕ шайне çĕкленме пулăшĕ.

Çавăн пекех эпир улшăннă çак тĕнчере чăваш культурин пĕлтерĕшĕ мĕнлерах пулнине, пирĕн хамăрăн вырăн ăçтарах пулнине ăнланса илме тивĕçлĕ. Мĕн калама пултаратпăр-ха эпир çĕнĕ тĕнчене, мĕнлерех янрĕ пирĕн сăмах? Хальлĕхе пире сахал пĕлеççĕ. Эпир хамăр çинчен ытла та именчĕклĕн, йăвашшăн пĕлтернĕ-ха. Çакна валли çĕнĕ идейăсем, пирĕн сăн-сăпата, хăйсене евĕрлĕхе палăртакан илемлĕх формисем кирлĕ. Хăш-пĕр уйрăм талантсен – творчество çыннисен пысăк ÿсĕмсем пур: Александр Васильевăн – музыкăра, Праски Виттин – живописçре, Борис Чиндыковăн драматургире. Пирĕн пресса, теле- тата радиожурналистика хăюллăрах, ирĕклĕрах ĕçлеме пуçларĕç. Анчах та çакă ытла та сахал-çке.

Пирĕн çакăнпа килĕшмех тивет: чăваш творчество интеллигенцийĕн тĕп пайĕ халăх тата общество ăнлавне ирĕке кăларас, ăна çĕнĕлле шухăшлама вĕрентес ĕçе активлăн хутшăнмалли майсемпе, çĕнетÿ пуçламăшĕнче пулнă майсемпе кирлĕ пек усă курма пĕлеймерĕ. Тен, пире чăвашсен шала кайнă чирĕсем чăрмантарчĕç пулĕ, анчах фактран пăрăнса иртме çук – çак процесс пирĕн социаллă пурнăçпа политика таппинчан кая тăрса юлчĕ, унпа тан пыма пултараймарĕ. Ку таранччен те пирĕн республика Аслă Совечĕпе Правительствине хăйсен ĕçĕнче тарăн витĕм кÿме хăват çитерекен культура представителĕсен вăйĕ пĕтĕçсе çирĕпленме пултараймарĕ.

Кунта эпĕ темиçе сăлтав куратăп. Хальччен те эпир культурăна патшалăх пулăшасса шанса, харам пырла кăмăл-туйăмран хăтăлса çитеймен тата патшалăх çине тăрантаракан çине пăхнă пек пăхатпăр. Тĕрĕссипе вара патшалăхпа искусство тĕллевĕсем пачах хире-хирĕçле. Патшалăхăн – империлле тĕллевсем, искусствăн – кăмăл-туйăмпа, ĕмĕт-шухăшпа çыхăннă тĕллевсем. Урăхла каласан, патшалăх саккас парать, çитменнине тата хушать те, искусство вара ирĕклĕн аталанма пултараймасть. Унсăр пуçне, лайăх пĕлетпĕр ĕнтĕ, чăн-чăн интеллигент вăл нихçан та влаçпа пĕр шухăшлă пулма пултараймасть. Çавна май культурăра патшалăх ăслă-тăнлă политика пурнăçа кĕртсе пыма та, наци культурине аталантармалли малашлăхсене палăртма та пултарать.

Иккĕмĕшĕ. Паянхи чăваш культуринче культура пуянлăхĕсем пăтрашăнса кайнă, «çÿлти шайри» тата «пĕчĕк шайри» культурăсене хакламалли принцип пăсăлнă. Ниме тăман сăмахсен пăтрашăвĕ, пуш параппан çапни, политикăри тата ăс-хакăл тĕлĕшĕнчи конформизм çеç вăйлă палăрса тăраççĕ. Хисеплĕ ятсен пĕлтерĕшĕ те чакнă. Радиопа талевидени каналĕсем пултарулăх çыхăнне те пыман, халăх музыки тесе ĕнентерекен суя музыкăпа тулса ларнă, чăваш халăхĕн юмах пек çырса кăтартнă историйĕ тăрăх чăваш халăхĕ пулса кайни, чăваш чĕлхи çинчен дилетантла ĕçсем умлă-хыçлă пичетленеççĕ. Шел пулин те, çакă пур çĕрте та тĕл пулать.

Творчество ителлигенцийĕ хăй вара политика хĕвĕшĕвĕнче тата шалти тĕркĕшÿсĕнче вăхăтне ирттерет.

Чăваш искусствинче тата чăваш сăмахлăхĕнче пахалăх тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ енлĕх çук. Тепĕр енчен, пĕтĕçтерекен çăлкуçсем, идейăсем те çук, çавăнпа та ăна халăхăн анлă массисем, вулакансем пĕтĕм чунчĕререн кăмăлласа кĕтмеççĕ.

Искусствăн мĕн пур жанрĕсенче те, литературăра та çĕнĕ ятсем курăнмаççĕ. Аслăрах ăрусене хĕтĕртсе пыракан çамрăк авторсем те çук. Наци кадрĕсем хатĕрлес ыйту – чи çивĕччисенчен пĕри. Культурăпа çут ĕç системи хăйĕн тĕп пĕлтерĕшне тахçанах çухатнă ĕнтĕ. Халĕ пире Чăваш Аслă Ÿнер Шкулĕ кирлĕ, вăл творчество элитине, кашни уйрăм пултарулăха хăйсене майлă ÿссе çитĕнме, çул кăтартса пыма пултарĕччĕ.

Паллах, унччченхи центршăн çеç ĕçлесе пурăннă «представительсен» культурине те пăрахăçлама тата чăваш культурин шалти аталанăвĕн тĕп логикине ăнланса илме тивет пулĕ. Ку тĕлĕшпе эпир пирвайхи утăмсем тăватпăр ĕнтĕ. Анчах та çакă вăл эпир хамăрпа çеç ĕçлеме тивĕçлине пĕлтермест, пирĕн Уралпа Атăл тăрăхĕнчи çывăхрах кÿршĕсемпе тачăрах хутшăнусем йĕркелеме тăрăшмалла, татах та малалла ĕçлесе тĕнче шайне, Европăпа Ази шайне çитме ăнтăлмалла! Ку тĕлĕшпе ЧР Правительстви тата Аслă Совечĕ уйрăмах пысăк явапллă, анчах та вĕсем хальлĕхе çывăхри тата инçетри чикĕ леш енчи тăвансемпе тата ытти халăхсемпе çыхăнусем йĕркелес енĕпе хăюллăн, çине тăрса ĕçленине кăтартмаççĕ.

Атнер ХУСАНКАЙ,
Чăваш наци конгресĕн президенчĕ.
*«Хыпар», 26.05.1993, 102№.*

## ВАККИСЕМ ЧĂПАЙЛАНАСШĂН, САПАЛАННИСЕМ – ПĔРЛЕШЕСШĔН

*1993 çулхи авăн уйăхĕн 13–18-мĕшĕсенче Мускавра, мэри çуртĕнче, Тĕнчери вак халăхсен ыйтăвĕсемпе конференци иртнĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн Аслă Совечĕ, Федерципе национальноçсен патшалăх комитечĕ, Çурçĕре аталантарас енĕпе ĕçлекен комитет, Юристсен союзĕ, Тĕнчери халăхсен килĕшÿпе аталану фончĕ (США) йĕркеленĕ. Конференцие 45 çĕр-шывран, тĕнчери виçĕ пысăк организацирен (çав шутра ООНран) тата Раççейри тĕрлĕ вырăнсенчен 300 çын хутшăннă.*

*Пысăк тĕл пулăва Раççейри сахал йышлă халăхсен ыйтăвĕсене пăхса тухассипе çыхăнтарнă, ăна ООН пĕлтернĕ «1993 çул – Тĕнчери вак халăхсен çулталӑкĕ» программăна никĕсе хурса йĕркеленĕ.*

*Чăваш Республикинчен конференцие Чăваш Республикин халăх депутачĕ Д.Ф. Семенов тата Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ В.П. Станьял тĕпчевçĕ кайса килнĕ.*

Сумлă та пысăк конференцие тĕплĕ хатĕрленнĕ. Тăватă куна пычĕç докладсемпе тавлашуллă ларусем. Тухса калакансем – пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчен: Колумбирен, Çĕнĕ Зеландирен, Канадăран, Голландирен, СШАран, Мексикăран, Суданран, Китайран... Раççей Федерацийĕн наци районĕсем, облаçĕсем, округĕсем, автономийĕсем, республикисем кунта хăйсен мĕн пур вак халăхĕсен çыннисене янă. Атăл тăрăхĕнчи халăхсенчен Н.Ф. Мошкин профессор мордва халăхĕн ыйтăвĕсемпе тата эпĕ «Диаспорăпа вак халăхсен ăс-пурлăх çыхăнăвĕсем» темăпа калаçрăмăр. Тулай чăвашсем Инçет Хĕвел тухăçĕнчи, Çĕпĕрти, Çурçĕрти халăхсемпе туслă та ĕçлĕ пулнине тĕслĕхсемпе кăтартрăм. Вак халăхсен сăмахлăхне чăвашсем 20-мĕш çулсенчех куçарнине, вĕсен пурнăçне Владимир Мешков художник пек талантлă ăстасем тĕрлĕ халăх хушшинче хастар çутатнине асăнтăм. Çак ырă тĕслĕхсем конференцие хутшăннисене килĕшнĕ-мĕн: ман пата ненец, коряк, хант, нивх, кет, куманчă делегачĕсем пыра-пыра калаçрĕç.

Кашни калаçу – асра хăвармалăх. Алтайра пурăнакан кумандинка Елизавета Ивановна Тукмачева, Учук ялĕнчи (В.М. Шукшин ячĕпе чапа тухнă Сростки ялĕ) куман раттинчен тухнă тĕпчевçĕ, чăвашпа куманчă чĕлхисенче пĕр евĕрлĕхсем пуррипе кăсăкланчĕ. *Чамăр – çумăр, нек – ĕне, махта – мухта, чĕр – çĕр, кум – хум сăмахсем* пирĕнни пекех янăранине эпĕ вăл хăйсен авалхи тĕнĕ çинчен каласа панă чух асăрхаса ăнлантăм. Халăх ячĕ те чăваш пĕлтерĕшлех: хум анчĕ. Авалхи халап тăрăх, куманчă халăхĕ Сăртлă Алтая шыв тулса кайсан хумпа юхса аннă, вара *куманчă (куманди)* халăхĕ пулса кайнă имĕш.

Тĕнчери тĕл пулусенче ют чĕлхене пĕлни питĕ кирлĕ. Эпĕ хам акăлчанла йĕркеллĕ калаçайманшăн хытă пăшăрхантăм. Çĕнĕ Зеландирен килнĕ паллă çынсем – Хью Темплтонпа Брюс Майлз Кэрран (вĕсем иккĕшĕ те конференцире доклад турĕç) тăхтавра хăйсем пырса калаçу пуçарчĕç, чăвашсем ытти çĕр-шывсенче пурри-çуккипе интересленчĕç. Чăваш наци конгресне чăвашсем ăçтан-ăçтан килнине каласа патăм. «Хамăрпа çыхăннă пулсан Çĕнĕ Зеландирен те чăваш янă пулăттăмĕр», – тесе савăнтарчĕç аякран килнĕ хăнасем.

Пысăк конференцие ирттерес тесе Национальноçсен Совечĕн З.А. Кор-

нилова ертсе пыракан яланхи комиссийӗ (Раççейри республикăсен, автономиллӗ облаçсемпе округсен тата вак халăхсен ыйтăвӗсене пăхса тухакан комисси) хастар ӗçленӗ. Ку комиссире – пирӗн ентеш А.М. Леонтьев депутат. Вăл конференцире кашни кунах пулчӗ. Тăхтав вăхăтӗнче Анатолий Михайлович пире Шурă çурта чӗнсе хăйсен ӗçӗпе паллаштарчӗ. Ун урлă Мускаври чăваш культурин центрӗпе çыхăнма çăмăл пулчӗ.

Конференци усăллă иртрӗ теме пултаратăп. Вак халăхсен (вырăсла – «коренные малочисленные народы») шăпи пирӗн тулай чăвашсен шăпипе пӗр манерлӗ пулни мана хытах пăшăрхантарать. Конференцире хама канăç паман чылай ыйтăвăн хуравне тупрăм. Ку енӗпе уйрăмах Национальноçсен Совечӗн председателӗпе Р.Г. Абдулатиповпа куçакуçăн калаçни юрарӗ. Вăл хăйӗн «Заговор против нации: национальное и националистическое в судьбах народов» кӗнекине алă пусса парнелерӗ. «Чăваш тусăмсене – хисеплесе», – тесе çырчӗ вăл кӗнеки çине. Хăйӗн докладӗнче те, пресс-конференцире те чăваш тĕслӗхӗсене илсе пачӗ.

Конференцире вак халăхсен прависем, паянхи пурнăçӗ, ӗлӗкхипе малашнехи ӗç-тăрăмӗ, вӗсене хӳтӗлекен саккунсем çинчен калаçу хӗрӳ пулса иртрӗ. Паянхи политика, патшалăх йӗрки, харкашухирӗçӳ пирки сăмах самаях тӳрӗ пулчӗ. Б.Н. Ельцинпа Р.И. Хасбулатов саламӗсем, Ю.Ф. Яровпа С.М. Шахрай доклачӗсем, тӳррипе каласан, мана тивӗçтермерӗç. Вӗсем Раççей халăхӗсен шурри-хурине ООНран килнӗ Генеральнӗй секретарӗн пулăшаканӗ И. Фалл, ООНăн тӗп халăхсен ыйтăвӗсемпе ӗçлекен ушкăн председателе Е.И. Даес, ЮНЕСКО пай пуçлăхӗ Б. Ишинжер докладçăсем чухлӗ те çутатса параймарӗç. Хыçри пукан шуçнă чухне халăх çинчен шухăшлама вăхăт çитместех ӗнтӗ. Çавăнпа Çурçӗрти, Инçет Хӗвел тухăçӗнчи, Çӗпӗрти сахал йышлă тӗп халăхсем çинчен чуна касса татмалла сăмахсем янăрарӗç. Çӗнетӳ çулӗсенче унти çынсен вăтам ӗмӗрӗ 20 çул ытла чакса ларнă. Ачасем виçӗ хут сахалрах çуралаççӗ, çынсем виçӗ хут ытларах вилеççӗ. Шкулсем хупăнаççӗ. Тытнă пăлансене ик кӗленче эрехле илсе каяççӗ, пӗр патроншăн 5–10 пин тенкӗ ыйтаççӗ...

Пӗр тăхтав вăхăтӗнче эпӗ Голландири эскимоссен правительстви (вӗсен хăйсен правительстви) ӗçкӗлӗхе хирӗç кӗрешнине кăтартакан сюжета куртăм. Унта кашни çынна сыватаççӗ, пăхаççӗ... Хыççăнах Чукоткăран килне врач (куçса çӳрекен медицина отрячӗн пуçлăхӗ) Лариса Абрютина хăй ӳкернӗ сюжета кăтартрӗ. Нишлӗх, тасамарлăх, сӳннӗ шанчăк. Тата тăнран çапакан ӗçкӗлех. Чăваш ялӗсенче те ӗçке ернӗ çынсем пайтах-ха, анчах вӗсем çулӗ-çулӗпе йăваланса ӗçсен те шăнса вилмеççӗ, кӳрше кӗрсе те пулин сывă юлаççӗ. Çурçӗр эрехӗ вырăнти вак халăхсене çава пекех касать...

«Чăваш çӗр çинчи питӗ ăслă халăх. Çӗр-шывне те тӗнчери чи лайăх вырăна суйласа илнӗ, хӗçпе-тӗнпе кассан та – пăрахса тарман», – тет мордва профессорӗ Н.Ф. Мокшин. «Кемӗрти чăвашсем те ăслă, чăтăмлă, ӗçчен. Авалхи халăх», – тимлӗн калаçать Çӗпӗрти университетăн этнографи кафедрин пуçлăхӗ А.И. Мартынов профессор. Эпӗ вӗсене: «Пысăклатса ан калăр, пирӗн питӗ нумай çитменлӗх, айванлăх, ăнманлăх», – тесе калатăп, анчах ăшра тăван халăхăмшăн чӗререн савăнатăп. «Кăштах, кăштах кăна хăюлăхпа чăмăртанулăх çитмест пире» тесе пăшăрханатăп. Хамăр хушăри е аякран килнӗ ăçтиçуксене нимле майпа та тивӗçтермен вырăнсенех кăштăрт сиксе ларма чӗптӗм те чармастпăр. Çавăнпа чăваш ачисем хушшинчен ертӳçӗсем сайра хутра çеç шăтарса тухаççӗ. Тухаççӗ те сӳнеççӗ – вӗсене тăван халăхӗ пӗрре те хӳтӗлемест. Вилме выртнă вак халăхсенни пекех ӗнтӗ.

Анчах нимле вак халăх та вилесшӗн мар. Чăмартанасшăн, чăпайланасшăн, ыттисемпе тан пуласшăн. Халăх йышӗ сахал пулни ненец, нивх, чукча тата ытти 60 ытла «вак халăх» çынни иккӗмӗшвиççӗмӗш сортлă çын пулнине пӗлтермест. Паха тир-сăраншăн, çӗр айӗнчи хура е сарă ылтăншăн, газшӗн вӗсене ӗмӗрхи тăван çӗрӗсенчен хăваласа яраççӗ. Итлемен чухне самолет çинчен пулеметпа персе йăхӗйăхӗпе пӗтерни те пулнă. Хăш-хăш халăх йышӗ халӗ темиçе теçеткерен е çӗртен те иртмест. Капла пулсан вӗсем кӗçех пач пӗтме, çӗр пичӗ çинчен яланлăхах çухалма пултараççӗ. Кам хăтарса хăварӗ вӗсене?

Конференцие хутшăннисене «Основы законодательства Российской Федерации о правовом статусе коренных малочисленных народов» закона салатса пачӗç. Ун умӗнче çапла çырнă: «Ку саккуна РФ Аслă Совечӗ 1993 çулхи çӗртмен 18-мӗшӗсенче йышăннă. Анчах Президент алă пусман, тӳрлетӳсене çӗнӗрен пăхса тухма тавăрса панă» тенӗ. Ку ӗнтӗ çирӗпленсе пыракан йăла. Саккунӗ те çук, пуррине те никам итлемест. Ахăр саманасем вăхăтран вăхăта кирек хăш çӗр-шыва та çавăрса илеççӗ. Анчах вӗсем пӗрех иртеççӗ. Пирӗн пуç çинчи тăвăл та иртетех. Вара хальччен çырулăхсăр пурăнакан сахал йышлă халăхсен сăввиюррине, юмах-халапне, çамрăк çыравçăсен хайлавӗсене чăвашла антологилесе кăларма та вăхăт пуласса ӗненсех тăратăп.

Пысăк совет энциклопедийӗнче («Малые народы Севера» статья) вак халăхсен шутне 26 ят кӗртнӗ. Кăштахран вӗсем те пӗтсе ларасси çинчен каланă. Чăнах та пӗтсе пынă «пӗчӗк халăхсем»: алим, осан, кот, упăх, тойот тата ытти нумай-нумай халăх ячӗ çук ӗнтӗ. Анчах пуррисене те ыттисемпе тан лартманнисен йышӗ сахал мар. Паçăр асăннă саккун хыçне «вырăнти сахал йышлă» халăхсен ячӗсене панă. Çакна чăваш вулаканӗсене туллин пӗлтерес килет. Акă вӗсем, авалхи халăхсен чăтăмлă тăхăмӗсем: абазин, агул, алеут, алютор, анди, арчин, ахвах, бежгин, ботлих, вепс, водь, гинух, годоберин, тат (туçи еврей), гунзиб, долган, ижор, ительмен, кайтаг, кератин, кванадин (багулал), керек, кет, коряк, кубачи, куманди, манси, нагайбак, нанай, нгасан, негидаль, ненец, нивх, орок (ульта), ороч, рутуль, саам, селькуп, таз, телеут, тинди, тофалар, тубалар, тува-тоджи, удегэй, ульча, хант, хварши, цахур, цез, чамал, челкан, чуван, чукча, чулым, шапсуг, шор, эвенк, эвен, энец, эскимос (юпик), юкагир.

Аслă Раççей айккине аякран килнӗ халăхсем мар вӗсем. Авалтан пурăнакан вырăнсене вӗсем сунар, выльăх-чӗрлӗх, пулă ӗçӗпе пуянлатнă. Истори «ваксен» пуян культурине усса паман-ха. Патшалăх тата çӗр-шыв ыр кăмăлӗ кăна нушари çынсене аслашшӗсен ятне манасран упраса хăварма пултарӗ.

Мускаври конференци ООН Генеральнăй Ассамблейине, тӗнчери çӗршывсен парламенчӗсемпе правительствисене Чӗнсе каларӗ. Унта вак халăхсен прависене хисеплеме, хайсем тӗллӗн йӗркеленсе пурăнма, тăван чӗлхисене, йăли-йӗркине аталантарма, хăйсен тӗнӗпе, хăйсен çӗрӗпе усӗ курма, хăнăхнă пек ӗçлеме, вӗренме, савăнма ирӗк памаллине асăрхаттарчӗ. ООНа 1994–2003 çулсене Тӗнчери тӗп халăхсен вунă çуллăхӗ тесе пӗлтерме ыйтрӗ. Çапла туса хурсан кăна халăхсем патне танлăхпа ирӗк, чӗрӗлӳпе аталану таврăнма пултарӗç.

Виталий СТАНЬЯЛ, Чăваш наци конгресӗн вице-президенчӗ.
*«Хыпар», 23.09.1993, 190№.*

## ПАРАППАННЕ ÇАПАТПĂР-ХА, СĂРНАЙНЕ КАЛАКАН ÇУКРАХ

*Пӗлтӗрхи юпа уйăхӗн саккăрмӗшпе тăххăрмӗш кунӗсенче шӗкӗр хуламăр Шупашкар чăннипех те чăваш халăхӗн сăпкине аса илтернӗччӗ, кунта чăваш сăмахӗ, чăваш кӗвви-юрри илтӗнсе тăчӗ, хăна çурчӗсем те тӗнчемӗрӗн тӗрлӗ вырăнӗсенчен килнӗ чăвашсене ăшшăн кӗтсе илнӗччӗ. Çирӗмӗн кайрӗç Наци конгресне Шăмăршă чăвашӗсем. Чăнах та, пурте тăван халăхшăн вута-шыва кӗме хатӗр теме çук, делегатсем хушшинче ăнсăртран-кӗмсӗртрен суйланнисем те пулчӗç. Мӗн тăвăн, халăх шăпине татса пама те «çӳлтен» кăтартнă тăрăх ячӗç çав.*

Конгресс уçăлнă кун çумăр çурӗ. «Чăваш куççулӗ», – терӗ пӗр юлташ. Тен, тӗрӗсси те пулчӗ пуль унăн сăмахӗнче...

Шупашкарта мӗн курни-илтни, Конгресс йышăнăвӗсем çинчен çырса тăмăп, массăллă информаци хатӗрӗсем «параппан çапма» питӗ маттур пулчӗç. «Чăваш халăхӗн ятне-сумне çӗклемелле! Тăван чӗлхене хисеплемелле!» – тесе кăшкăракансем те, «Пӗтетпӗр! Вилетпăр!» – тесе нăйкăшакансем те пулмарӗç мар. Çапах та ыррине ытларах куртăмăр, ăша хыврăмăр. Делегатсен пысăк пайӗ халăхшăн тăрăшма аврăланса-хӗмленсе таврăнчӗ Шупашкартан. Хулана ăшă йӗмпе кăлпасси туянма çеç кайнисене (ун пеккисем те пурччӗ) манăн делегат теес те килмест. Çын шучӗ çеç.

Конгресс пулнăранпа çулталăк çитнĕ май Шăмăршăра мĕн-мĕн туни пирки калас сăмахăм пур. Чи малтан Раççейри мĕн пур чăваш ачисен пĕрремĕш фестивальне (иккĕмĕшĕ пулĕ-ши?) Шăмăршăра ирттернине питĕ пысăк ĕç тесе шутламалла. Ку енĕпе Конгресс делегачĕ, вăтам шкул директорĕ Владимир Андронов ларса канма пĕлмесĕр ĕçлерĕ, хăш-пĕр ĕççене манăн та хутшăнма тиврĕ. Пĕлесчĕ сирĕн, мĕнешкел савăнчĕç Раççейĕн тĕрлĕ вырăнĕсенчен пуçтарăннă чăваш ачисем хăйсем валли çакăн пек чаплă уяв туса панăшăн! Шел, фестивале Наци конгресĕн ертÿçисем килеймерĕç, уяв хупăннă чух Мăн Канаш ячĕпе сăмах калама та манах хушрĕç.

Фестиваль ачасен чĕринче уяв пулнипе çеç мар, чăваш культурине, чĕлхемĕрĕн илемне ăнланса илме пулăшнипе те асра юлчĕ пулĕ. Шупашкар хăнисем те, делегацисен ертÿçисем те ăслă калаçрĕç, чĕлхене юратма ачаран хăнăхтармаллине палăртрĕç.

Çитменлĕхсем те пулмарĕç мар ĕнтĕ, унсăрăн мĕнле-ха? Владимир Андронова Шăмăршă шкулĕн ачисем вырăсла калаçма юратарах пани, хăнасем умĕнче те таса чăваш чĕлхипе калаçайманни пăшăрхантарать. Ку вăл – пирĕн чир. Эпир – пысăк е пĕчĕк пуçлăхсем – хамăрăн ачасене халăхран уйăрма, тăван чĕлхерен ютшăнтарма хамăрах тăрăшмастпăр-и-ха?

Фестиваль вăхăтĕнче чăваш чĕлхи учителĕсемпе тĕл пулса калаçма тиврĕ. Чылайăшĕ чăвашсен паллă писателĕсемпе поэчĕсене курасшăнччĕ, юрăçисене кĕтрĕç. Килеймерĕç çав пирĕн «шур сухалсем». Ывăнма пĕлмен Петĕр Ялкире итленипех çырлахрăмăр, çамрăк сăвăç Анатолий Смолин çулăмлă сăввисемпе чуна çĕклерĕ.

Ман шутпа, фестивалĕн пĕлтерĕшĕ Наци конгресĕнчен нумай кая мар, анчах республикăн Аслă Совечĕ апла тесе шутламарĕ пулас, саламлă çыру яма та ерçеймерĕ. Юрать-ха Аслă Совет депутачĕ Василий Максимов ентешĕсене манман, фестиваль ячĕпе ентешĕсем ячĕпе телеграмма çаптарнă. Вырăнти пуçлăхсем те чăваш ачисен фестивальне çĕр-шыв шайлĕ мероприяти вырăнне хуни туйăнсах каймарĕ.

Наци когнгресĕ хыççăн ытти ĕçсем те тунă. Районта чăвашлăх вăй илтĕр тесе тăрăшрĕç делегатсем. Ку енĕпе уйрăмах Асанкассинчи Михаил Ванюшина, Виçпÿрт Шăмăршăри Геннадий Смирнова, Палтиелĕнчи Зинаида Свекловăна тата ыттисене ырăпа палăртмалла. Конгресс делегачĕ, район администрацийĕн культура пайĕн пуçлăхĕ Борис Мишкин халăхăн манăçма пуçланă йăли-йĕркине çĕнĕрен чĕртсе тăратас тесе пысăк ĕç тăвать. Районти кашни ялта тенĕ пекех фольклор ушкăнĕсем йĕркеленинче унăн тÿпи те пысăк.

Çапах та Конгресра мĕн палăртни йăлтах пурнăçланчĕ тесе калама иртерех-ха. Аслă Совет йышăннă Чĕлхе саккунĕ те ытларах чухне хут çинче юлать. Шăмăршăри автостанцире маршрутсен ячĕсене вырăсла кăна пĕлтерни те (унччен чăвашла та калакалатчĕç), кинотеатрпа клубсенче чăвашла куçарнă фильмсем кăтартманни те, ĕç хучĕсене вырăсла çеç çырни те çак саккун пурнăçланманиине çирĕплетеççĕ. Эпĕ кунта вырăс чĕлхипе калаçмалла мар теместĕп-ха, калаçчăр та, çырччăр та, анчах хамăр Чăваш Республикинче пурăннине те манса каяс марччĕ, тăп халăха сума сăвасчĕ.

«Параппанне çапатпăр-ха, сăрнайне калакан çукрах», – пăшăрханса калаçрĕ манпа Конгресс делегачĕ Михаил Ванюшин вĕрентекен. Пирĕн шутпа, сăрнай сасси Шупашкартан илтĕнмелле, ял-ял тăрăх саланмалла. Чĕлхе пирки сăмах павранинчен усси нумаях мар, мĕнле те пулин ырă ĕç тума тăрăшасчĕ халăхăмăршăн.

Иван САЛАНДАЕВ, Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн членĕ,<br>Шăмăршă район хаçачĕн редактор заместителĕ.<br>*«Хыпар», 6.10.1993, 199№.*

## НАЦИ КОНГРЕСĔН ВИТĔМЛĔРЕХ ПУЛМАЛЛА

### Шупашкарта ЧНК Мăн Канашĕ ĕçлет…

*Ĕнер Шупашкарта, Советсен çуртĕнче, Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕ ĕçлеме пуçларĕ. Ăна, кĕске сăмах каласа, ЧНК президенчĕ Атнер Хусанкай уçрĕ. Президиумра – Кĕçĕн Канаш членĕсем: Аркадий Айдак, Виталий Иванов тата ыттисем. Залра, Мăн Канаш членĕсемсĕр пуçне, чĕннĕ хăнасем, чăваш наци юхăмĕн хастарĕсем, чăваш культурипе искусствин паллă ĕçченĕсем. Тĕрĕк халăхĕсен Ассамблейин председателĕ Вячеслав Тимофеев та ларăва хутшăнать.*

Мăн Канаш ларăвне хутшăнакансем, Раççейри юлашки вăхăтри пăтрашăнусенче пуç хунисене асăнса Хурлану кунĕ ирттернĕ май тата Конгресс иртнĕ хыççăнхи тапхăрта пиртен вăхатсăр уйрăлса кайнă Мăн Канаш членне Борис Никитина (Тутарстан) асăнса пĕр минут шăп тăчĕç.

Кун йĕркинче тăватă ыйту: 1) ЧНК çулталăкри ĕçĕ çинчен; 2) чăваш диаспорин ыйтăвĕсем; 3) ЧНК Фончĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен пĕлтерни; 4) ЧНК Уставне кăртнĕ улшăнусене çирĕплетесси.

Пĕрремĕш ыйтупа ЧНК президенчĕ **Атнер Хусанкай**, иккĕмĕмĕш тата тăваттăмĕш ыйтусемпе ЧНК вице-президенчĕсем **Виталий Никитин-Станьялпа Василий Андреев**, виççĕмĕш ыйтупа ЧНК Фончĕн директорĕ **Николай Пыркин** докладсем туса пачĕç.

Конгресс Мăн тата Кĕçĕн Канашсене Устава регистрациленĕ чухне кирлĕ пулакан редакци улшăнăвĕсене кĕртме ирĕк панă. Çак кунсенче ЧР Юстици министерстви ЧНК Уставне регистрациленĕ. Çавна май Мăн Канаш ЧНК Уставĕн çĕнĕ редакцине пĕр саслăн çирĕплетрĕ.

Тăхтав хыççăн докладсене сÿтсе явма **Валери Туркай** (Шупашкар), **Герман Викторов** (Эстони), **Виктор Симаков** (Самар облаçĕ), **Виссарион Пряников** (Мускав), **Анатолий Архипов** (Тюмень облаçĕ), **Анатолий Ефимов-Кибеч** (Шупашкар) хутшăнчĕç.

Мăн Канаш ЧНК ĕçне тăтăшах ыр кăмăллăн пулăшса пыракан Александр Горюнов вырăса (Мускав) чун-чĕререн тав турĕ.

ЧНК Мăн Канашĕн ĕçне Кĕçĕн Канаш членĕсем, ЧР Аслă Совечĕн Председателĕ **Эдуард Кубарев** тата ЧР Министрсен Совечĕн Председателĕн çумĕ **Владимир Мидуков** хутшăнчĕç.

Апат хыççăн Мăн Канашра докладсене малалла сÿтсе явнă.

Паян ЧНК Мăн Канашĕ малалла ĕçлет.

Илле ИВАНОВ.<br>*«Хыпар», 8.10.1993, 201–202№.*

## …ЧНК Мăн Канашĕ хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ

*Малтанхи кун докладсене сÿтсе явма Мăн Канашпа Кĕçĕн Канаш членĕсем те, хăнасем те хутшăнчĕç. Чăн малтан «Тав» ыр кăмăллăх фончĕн вице-президенчĕ* ***Валери Туркай*** *хăйĕн хĕрÿллĕ сăмахне çапларах каларĕ:*

– Мĕнле пысăк ĕçсем туни çинчен асăнчĕç ĕнтĕ, анчах та тăвайманни ытларах та пулчĕ-тĕр. Мĕнлерех пысăк шанăçпа кĕтсе илнĕччĕ, мĕнлерех хавхаланнăччĕ чăвашсен Аслă пухăвĕ пулсан. Анчах та Конгресс хăйсене тÿрре кăлараймарĕ, хамăрăн яваплăха та çителĕклĕ тарăн туйса илеймерĕмĕр.

Мускаври чăвашсен культура обществин пуçлăхĕ **Виссарион Пряников** Конгреса регистрацилес ĕç çулталăка тăсăлнăшăн ÿпкелешрĕ:

– Штатра тăрса ĕçлекен ятарлă çынсем халĕ те çук. Бюджет çирĕплетмелле: укçа илсе ĕçлекен çынсемсĕр ĕçе кирлĕ пек тăваяс çук. Пÿлем ыйтăвне те татса пама вăхăт. Мускавра вăрçă пулса иртрĕ, Мускав чăвашĕсем хăраса ÿкмерĕç, кунтисем хăраса кайнă – «унта» мĕн каласса кĕтсе пурăнаççĕ. Çитет Мускава пăхса тăрса. Юпа уйăхĕн 24-мĕшне – Чаваш патшалăхĕ Суверенитет илнĕ куна – кунта хатĕрленеççĕ-и? Эпĕ сире пурне те хăнана чĕнетĕп, çак уява ЗИЛ завочĕн культура центрĕнче ирттерĕпĕр.

Тюмень облаçĕнчен килнĕ **Анатолий Архипов** сăмахĕ те савăнăçлах пулмарĕ:

– Конгресра ташларăмăр, юрларăмăр, калаçрĕмăр. Çулталăк иртрĕ, тытса паллашма унăн чăвашла уставĕ пур-и? «Хыпар» хаçат урлă çеç ЧНК ĕçĕ пирки пĕлетпĕр. Мăн Канашпа Кĕçĕн Канаш хушшинче йĕркеллĕ çыхăну та тытма çук. Пирĕн ассоциаци аякри чăвашсене

пулăшма тĕллев лартнă: Конгресран хÿтлĕх ыйтса тĕрлĕ йышăнусем яратпăр – чĕнмест. Укçа ыйтман, ыйтмастпăр та, ытларах обществăлла организацисемпе ĕçлемелле, пире ыр сăмахпа пулăшсан та тем пекехчĕ. Пирĕнпе экономика тĕлĕшĕнчен те çыхăну тытаймаççĕ, ĕç укçи пирĕн Раççейĕпе те чи пысăкки пулнине манса каяс марччĕ. Мăн Канаш умне ыйту тăрататпăр: Кĕçĕн Канаш хăйĕн ĕçне лайăхрах туса пытăр тесен ăна çĕнетмелле.

**Анатолий Ефимов-Кибеч** тĕп хулара наци туртăмĕ вăйсăр, нумайăшĕ çитес çул 525 çул тултаракан Шупашкар нихăçан та чăваш хули пулман, пулмасть те терĕ. Сăмахне вăл президентлă çĕр-шыв пулмасăр эпир Чăваш çĕр-шывĕн тĕллевне пурнăçлаяс çук текен шухăшпа вĕçлерĕ.

Апат хыççăн калаçу татах та хĕрÿрех пулчĕ, мĕнле кăна шухăш палăрмарĕ пуль: Чĕмпĕр чăваш шкулне чĕртсе тăратмаллах, Ульяновскра чăваш университечĕ йĕркелемелле, Уралпа Атăл хушшинчи чăвашсем валли пĕрлĕх пулмалла, вырăнти пуçлăхсемшĕн ЧНК нимех те мар, çавăнпа та ăна РФ шайĕнче регистрацилемелле, чăваш пурăнакан пур вырăнта те ЧНК элчисем пулмалла, вĕсен шалупа ĕçлемелле.

Чĕмпĕр чăвашĕсен кĕлмĕçленсе çÿремелле мар, Чăваш енпе пĕрлешмелли çинчен ыйту тăратмалла (**Виктор Егоровпа Олег Мустаев**); чăваш халăхĕн хăйĕн патшалăх пулмалла (**Праски Витти**); Иван Яковлев вăхăтĕнче чăвашсемпе вырăссен мал курăмлă çыннисем пĕрле ĕçленĕ ырă йăлана манмалла мер (**Алексей Иванов-Ехвет**); чăвашсем пурăнакан регионсенче кашнинчех чăваш çамрăкĕсен пĕрлĕхне йĕркелемелле (**Олег Цыпленков**).

Чĕлхе ыйтăвĕ питĕ çивĕч тухса тăчĕ. **Аркадий Айдак**: Раççейрен уйрăлас шухăш пирĕн пулмалла та мар, анчах та чăваш чĕлхине сыхласа хăварас тесен ăна патшалăхăн пĕртен пĕр чĕлхи туса хумалла; **Вячеслав Тимофеев**: кашнин хăйĕн çемйинче ачисене чăвашла вĕрентмелле, Конгреса мул тăвакан çын кĕрлĕ, ЧНКн политика тĕллевĕсене уççăн палăртмалла; **Валентина Острякова** «Чăваш Ачи» ассоциаци ячĕпе ЧР Министрсен Советĕнчен Шупашкарти 3-мĕш ача садне чăваш ача сачĕ тума ыйтнă çырăва вуласа пачĕ. «Электроприбор» производство пĕрлешĕвĕн тĕп директорĕ **Леонид Яковлев** чĕлхе çинчен çеç калаçмалла марри, экономика çине те пăхмалли, Раççейрен уйрăлсан пире Анăç таптаса каясран хăрамалли çинчен каларĕ. Халăх писателĕ **Хветĕр Уяр** чăваш çынни хăйĕн çĕрĕ çинче хăй хуçа пулса пурăнма пултарасса шаннине пĕлтерчĕ.

Темле пулсан та – çакăнта пухăннисем пурте – Пушкăртстанра-и, Казахстанра-и, Самар облаçĕнче-и, тĕп хуламăрта пурăнаççĕ-и вĕсем – чăваш халăхĕн малашлăхĕ çутă, çул-йĕрĕ такăр пултăр тесе хĕрсех калаçрĕç.

Юпа уйăхĕн 8-мĕшĕсенче Мăн Канаш хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Юлашки кун ĕçĕпе тата йышăнусемпе çитес номерте паллаштаратпăр.

Римма ГУРЬЯНОВА.
*«Хыпар», 9.10.1993, 203№.*

## ТИШКЕРСЕ ТЕ, ТĔПЧЕСЕ ТЕ
### (ЧНК президенчĕн Атнер Хусанкайăн доклачĕ)

Пĕлтĕрхи юпа уйăхĕн 8–9-мĕшĕсенче эпир Аслă Пухура тĕрлĕ пысăк документсем йышăнтăмăр. Паллах, çав йышăнусене тÿрех, çулталăк хушшинчех пурнăçа кĕртме йывăр. Хăш-пĕр документ наци культурин аталанăвĕпе, чăваш наци кадрĕсемпе, массăллă информаци хатĕрĕсемпе, чăваш кино ÿнерне çĕнĕрен чĕртсе ярас ыйтусемпе тата ыттисемпе те çыхăннă. Ку ытларах культура уйĕ, культура сфери. Унсăрăн наци пурнăçĕ тулли мар. Енчен те наци культури сÿнет е унăн аталанма май çук пулсассăн, патшалăхран пулăшу илмест пулсассăн– ун пек халăх тулли пурнăçпа пурăнать тесе калама пултараймастпăр.

«Чăваш Республикин патшалăх суверенитечĕ çинчен» резолюцире çапла çырса хăварнă: «Чăваш Республикин Аслă Совечĕ 1990 çулта чи малтан йышăннă законсенчен пĕри – «Чăваш Республикин патшалăх чĕлхисем çинчен». Анчах та вăхăт иртсе пынă май çав закон пурнăçа кĕменнине куртăмăр ĕнтĕ. Çавăнпа та Чăваш наци конгресĕ йышăннă резолюцире чĕлхесем çинчен калакан закона пурнăçа кĕртмелли ятарлă патшалăх программи пулмалла тесе палăртрăмăр. Аслă Совет çав патшалăх программине йышăннă.

Юлашки вăхăтра тĕрлĕ общество организацийĕсем патшалăх тытăмĕнчи министерствăсемпе ведомствăсем урлă чăвашсем пурăнакан ытти вырăнсемпе тытакан çыхăнусем йĕркеленсе пыраççĕ. Анчах та пирĕн унччен ку енĕпе ĕçлекен ятарлă власть органĕ пулман. Конгресс ку енĕпе ятарлă патшалăх органĕ пулмалла тесе йышăннă. Анчах та Министрсен Советĕнче, сÿтсе явнă чухне пирĕн çыхăнусем ытларах культура енĕпе аталанса пынине шута илса, уйрăм ятарлă патшалăх комитетне халь тытса тăма йывăррине, ку енĕпе ĕçлеме пултаракан хатĕр кадрсем çуккине пула Культура министерствин ĕçне анлăлатас, унăн тытăмне реорганизацилес терĕç. Халĕ вăл пирĕн Культурăпа наци хутшăнăвĕсен министерстви ятлă. Унта уйрăм пай пур, унта министр çумĕ П.С. Краснов ятарласа çак ыйтусемпе ĕçлекен патшалăх çынни пулса тăрать. Чăнах та, халь çак министерство хăйĕн ĕçне çĕнĕлле туса пырать. Ку вăл каллех Чăваш наци конгресĕн йышăнăвне пурнăçа кĕртниех пулать.

Çав вăхăтрах чылай йышăнусем, тĕрлĕ сăлтавсене пула, пурнăçланайман. Тĕслĕхрен, çакна асăннă пулăттăм. Чăваш Республикин Конституцийĕ пирки Аслă Советра ĕç пырать, анчах та питĕ вăраххăн, конституци комиссийĕ татăклă утăмсем тăваймарĕ.

Çав вăхăтрах хăш-пĕр ыйтупа Чăваш Республикинче ĕç самаях хускалчĕ темелле. Уйрăмах кунта наци шкулĕсем уçнине палăртмалла. Вĕсем валли ятарлă кĕнекесем тухма пуçларĕç. Ку енĕпе уйрăмах РИПКРНО ĕçне пысăка хурса хакласшăн. Халĕ унăн ячĕ урăхла, анчах та унта ĕçлекенсем юлашки вăхăтра пысăк ĕçсем тума пуçларĕç. «Халăх шкулĕ» ятарлă журнал, тĕрлĕ методика хатĕрĕсем, вĕрентÿ пособийĕсем хатĕрлесе кăлараççĕ.

Пĕтĕмĕшле илсен – чăваш наци ĕçне виçĕ тĕллевлĕ куратăп. Пĕрремĕшĕ вăл – чăваш шайĕнче е, урăхларах каласан, чăвашсем хушшинче пулса иртнĕ ĕçсем. Иккĕмĕшĕ – тăванла халăхсемпе çыхăну тытасси. Виççĕмĕшĕ – Чăваш наци конгресĕ пултарнă тарăн тĕнче шайне тухни, унти халăхсемпе çыхăну тытасси.

Конгресс хыççăн тĕрлĕ вырăнсенче, Чăваш наци конгресĕн уйрăмĕсем е чăваш культура обществисем пур çĕрте, тÿрех Конгресс йышăннă документсене, тĕпрен илсен, унăн тĕллевĕсене, сÿтсе яврĕç, пысăк хак пачĕç. 1992 çулхи чÿк тата раштав уйăхĕсенче Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăвашсен пухăвĕ иртрĕ. Унта 250 ытла делегат пулчĕ. Çавăн пекех Иркутск облаçĕнчи «Юлташ» чăваш культура центрĕн анлă ларăвĕ пулса иртнĕ; Тюмень облаçĕнчи чăвашсен ушкăнĕсем Конгресс решенийĕсене сÿтсе яврĕç, лайăхпа йышăнчĕç. Çавăн пекех Тольятти регионĕнчи чăвашсене çутта кăларас енĕпе ĕçлекен «Шанчăк» пĕрлешÿ Конгресс пирки хăйĕн ырă сăмахне пирĕн пата çитерчĕ, Самар хулинчи чăваш культурин «Пехил» пĕрлĕхĕ те Конгресăн ыйтăвĕсене сÿтсе явнă. Ун пек тĕслĕхсем йышлă. Чăвашсен Аслă пухăвĕн йышăнăвĕсем чăвашсен пурнăçĕн тĕп шăнăрне – тĕп çул-йĕрне кăтартакан тĕслĕхсем пулса тăраççĕ.

Конгресс иртнĕ хыççăн кÿршĕри республикăсемпе те çыхăнусем çирĕпленчĕç. Эпир Хусанта пĕтĕм тутарсен общество центрĕн пленумне хутшăнтăмăр. Унта мари халăхĕн çыннисем, тутар общество центрĕн, Чăваш наци конгресĕн представителĕсем Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен пĕрлĕхне туса хурасси çинчен ятарласа калаçрăмăр. Хальхи лару-тăрура çак регионта пурăнакан халăхсем пĕр-пĕринпе çыхăну тытассине тата хăйсен шалти ыйтăвĕсене пĕрпĕрне пулăшса татса парассине Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен пĕрлĕхĕ урлă тума çăмăлрах пулни пирки пĕр шухăшлă пултăмăр.

Эпир мари халăхĕн Аслă пухăвне хутшăнтăмăр. Унта та, пĕтĕмĕшле илсен, мари халăх пухăвĕ çак шухăша ырларĕ.

Хусанта пĕтĕм тĕрĕк халăхĕсен Ассамблейине ЧНК ячĕпе пĕрремĕш хут

хутшăнтăмăр. Вăл тĕрĕк халăхĕсен культура обществисен тата центрĕсен ертÿçисен тĕл пулăвĕ пулчĕ. Унта эпир турккăсемпе те тĕл пултăмăр, Тĕрĕк тĕнчине тĕпчекен фонд çыннисемпе çыхăну йĕркелерĕмĕр. Çакă пире хамăрпа тăванлă халăхсемпе çыхăну йĕркелесе яма май пачĕ. Ĕпхÿре тĕрĕк çамрăкĕсен иккĕмĕш пухăвĕ иртрĕ. Унта та пирĕн Чăваш наци конгресĕ тата Чăваш çамрăкĕсен союзĕ ячĕпе делегатсем хутшăннă, хамăрăн Аслă пуху ячĕпе сăмах каланă.

Ун йышши тĕл пулусем, тĕрлĕ канашлусем çулталăк хушшинче питĕ нумай иртрĕç. Пурне те кунта асăнса тухма май çук.

Самарти Уралпа Атăл тăрăхĕнчи канашлу çинчен пĕр-ик сăмах. Вăл нарăсăн 27–28-мĕшĕсенче иртрĕ. Унăн тĕп ыйтăвĕсем – Раççей Федерацийĕнчи наци политики тата наци хутшăнăвĕсем. Тĕпрен илсен, канашлура наци политикин тĕп тĕллевĕсене, принципĕсене сÿтсе явнă. Эпир та хамăрăн сĕнÿсене патăмăр. Раççей Федерацийĕн шайĕнче çав ĕç халĕ те вĕçленмен-ха, анчах унта тĕп шухăш çакă пулчĕ: Раççей Федерацийĕн тытăмĕнче йĕркеллĕ наци политикине, тен, тума майĕ те çук. Культурăлла этнос шайĕнче тахçантанпах йĕркеленсе çитнĕ уйрăм халăхсем хушшинче çавăн пек наци политикин тĕллевĕсене, унăн принципĕсеме палăртма регионсен шайĕнче çăмăлрах пулĕ. Эпир хамар шăпана ытларах Атăлпа Урал тăрăхĕнче пурăнакан халăхсемпе çыхăнтаратпăр. Пире истори çулĕ çак тăрăха илсе çитернĕ, çавăнпа та пирĕн кÿршĕллĕ халăхсемпе малтанхи пекех туслă, йĕркеллĕ килĕштерсе пурăнас пулать, вĕсемпе пĕрле хамăр умра тăракан ыйтусене татса пама тăрăшас пулать.

Çуркунне, ака уйăхĕнче, Чăваш наци конгресĕ енĕпе Тĕрĕк халăхĕсен Ассамблейин ĕçне иккĕмĕш хут хутшăнма тиврĕ. Ассамблея пленумĕ Мускаври иртрĕ. Унта çакăн пек йышăну тунă: тĕрĕк халăхĕсен виççĕмĕш пухăвне Шупашкарта авăн уйăхĕнче ирттерес. Чăнах та, Тĕрĕк халăхĕсен пухăвĕ пĕр уйăх каялла Шупашкарта иртрĕ. Тĕрлĕ вырăнтан килнĕ тĕрĕк тăванăмăрсем çак пухăва лайăх хак пачĕç. Делегацисем питĕ йышлă пулчĕç, уйрăмах Тутарстанран, Азербайджанран тата ытти вырăнсенчен те. Чăваш историйĕнче пĕрремĕш хут тĕрĕк халăхĕсен çакăн пек пухăвĕ пулса иртрĕ. Ман шутпа, тĕрлĕ политика саманчĕсене шута илмесен, çапла калама пулать: тĕрĕк халăхĕсемпе çыхăну тытни хамăрăн историе, тĕрĕк тымарне тарăнрах ăнланма пулăшать. Паллах, сас-хура тĕрлĕрен пулчĕ: тĕрĕксем-и эпир – чăвашсем е çук-и, анчах та чăнлăх вăл чăнлăх, ăна ăслăлăх тахçанах çирĕплетсе панă: пирĕн чĕлхе хăйĕн тымарĕпе те, аталанăвĕпе те тĕрĕк чĕлхисен йышне кĕрет. Вăл, паллах, ытти тĕрĕк чĕлхисем пак мар. Вĕсенчен тахçанах уйрăлса кайнă, анчах та тĕп, кăк сăмахсен сийне авалхи тĕрĕк сăмахĕсемпе çеç çыхăнтарма пултаратпăр. Пуху ку енĕпе çак шухăша та çирĕплетсе пачĕ.

Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен пĕрлĕхне тăвас ыйтусемпе тĕрлĕ канашлусем иртрĕç: çу уйăхĕнче – Шупашкарта, утă уйăхĕнче – Хусанта.

Чăваш наци конгресĕн йышăнăвне пурнăçа кĕртсе эпир Тĕнчене тухайман нацисеме халăхсен пĕрлĕхĕпе çыхăнтăмăр. Çак пĕрлĕх вăл хăйсене евĕрлĕ, кĕскен каласан, ООНра тăман халăхсене пулăшакан организаци. Эпир кăрлачăн 19–24-мĕшĕсенче çак организацин Гаага хулинче пулса иртнĕ виççĕмĕш Тĕп (Генеральнăй) Ассамблейин ĕçне хутшăнтăмăр. Пĕлетĕр ĕнтĕ, 1993 çул, ООН йышăннă тăрăх, Тĕп халăхсен çулĕ. Тен, çавна шута илсе, Тĕнчене тухайман нацисемпе халăхсен пĕрлĕхĕ пирĕн документсене хăвăрт пăхса тухрĕ, Чăваш наци конгресĕн ĕçне хăйсене евĕрлĕ хак пачĕ тата пире çак организаци йышне илчĕ. Ку чăнах та хăйсене евĕрлĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ событи, мĕншĕн тесен кăрлачăн 19-мĕшĕсенче историре пĕрремĕш хут чăваш халăхĕн тĕнче шайне тухма мехел çитрĕ.

Çак организацин тĕп тĕллевĕ – тĕрлĕ халăхсем хушшинчи çыхăнусене йĕркелесси, вĕсене демократи никĕсĕ çинче хăй тĕлленĕх правине çĕнсе илме пулăшасси. Çакă чи малтан халăх кăмăлĕнчен килет, ăна вăйпа никам та хистемест, анчах та халăх самоопределени правине илессишĕн ăнтăлать пулсан ку енĕпе организаци пулăшма пултарать. Унăн йышĕ çулталăк хушшинче самаях ÿсрĕ.

Çавăн пекех Чăваш наци конгресĕн ĕçĕ пирки манăн Америкăри Пĕрлешуллĕ Штатсенчи Висконсин штатĕнчи Медисон хулиинче «Тĕп Ази тата юнашарти регионсем» Пĕтĕм тĕнчери наука конференцийĕнче каласа пама тиврĕ. Унта эпир Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕпе Л.П. Кураковпа кайрăмăр. Эпĕ унта ытларах чăваш наци юхăмĕн аталанăвĕ, Чăваш наци конгресĕн ĕçĕсем çинчен каласа патăм.

Тĕнчене тухайман халăхсемпе нацисен пĕрлĕхĕн ĕçĕсене эпир каярахпа Хусанти, Эстонири Пярну хулинчи канашлусенче сÿтсе яврăмăр. Çак çыхăнусен пĕлтерĕшĕ çапларах: хальччен нумай çĕр-шывра чăваш пирки никам та илтмен, ун пек халăх пурри çинчен пĕлмеççĕ. Паллах, пĕлменлĕхĕн хăйĕн сăлтавĕсем пулнă, анчах та юлашки вăхăтра ют халăхсем ăнланма пуçларĕç – Раççей вăл вырăс халăхĕн çĕр-шывĕ çеç мар, унта тĕрлĕ халăхсем   пурăнаççĕ. Çак çыхăнусене йĕркелесе яни хамăрăн чăваш ыйтăвне çавăнта хускатма, чăваш пурнăçĕ пирки информаци пама, культурăпа паллаштарма май парать. Çавăнпа вĕсем усăллă. Ытти халăхсен нушисене пĕлнĕ хыççăн хамăрăн чăваш ыйтăвĕсем çине тепĕр куçпа пăхма пуçлатпăр.

Чăваш наци конгресĕн ĕçĕнче культурăпа çыхăннă тĕрлĕ событисем нумай пулса иртрĕç. Йăлана кĕнĕ йĕркепе Çеçпĕлĕн çуралнă кунне паллă турăмăр. Митта Ваçлейĕ çуралнăранла 85 çул çитнине, И.Я. Яковлевăн 145 çулне чысланине асăнасшĕн. И.Я. Яковлевăн çуралнă кунĕ халь Чăваш чĕлхин кунĕ те (ăна Аслă Совет çирĕплетнĕ). Ака уйăхĕн 25-мĕшĕсенче шкулсенче, культура учрежденийĕсенче тĕрлĕ мероприятисем ирттереççĕ. «Хыпар» хаçата пуçласа яраканĕ, паллă тĕпчевçĕ, этнограф, историк Н.В. Никольский çуралнăранпа 115 çул çитнине кăçалхи çу уйăхĕнче анлăн паллă тунă. Кунта Чăваш наци конгресĕн тÿпи те пур тесшĕн. Çитес вăхăтра Н.В. Никольский Хусанта пурăннă, ĕçленĕ çурт çине Асăну хăми çакасшăн. Унта Хусанти чăвашсем хастар хутшăнасса шанас килет.

Чĕмпĕрте çуркунне вара асра юлмалли уяв, ăмăрту – «Чăваш шăпчăкĕ» иртрĕ. Унта та хутшăннă эпир, пултарнă тарăн укçа-тенкĕпе пулăшнă. Çавăн пекех Пушкăртстанра «Чăваш пики» конкурс иртрĕ, унта Кĕçĕн Канаш членĕ Э.А. Кубарев та хутшăннă. Хамăр патăрта – Шăмăршă районĕнче – Раççейри чăваш ачисен пĕрремĕш фестивальне йĕркелерĕç. Авăнăн 25-мĕшĕсенче Шупашкарта «Атăлçи çăл куçĕсем» уяв ирттернĕ. Унта тĕрлĕ халăхсен, уйрăмах республикăра пурăнакан тăватă халăхăн – чăваш, тутар, ирçе, вырăс – фольклор ушкăнĕсем хутшăннă.

Çак уявсем кирлĕ, вĕсемсĕр пурнăç кичем, анчах та, ман шутпа, Чăваш наци конгресĕн ĕçĕнче тишкерÿ, тарăн тĕпчев те кирлĕ. Хальлĕхе ун пек тĕпчевсем тума йывăртарах, мĕншĕн тесен ЧНК ертÿçисем, унăн Канашĕсен членĕсем Конгресс ĕçĕсемшĕн ятарлă ĕç укçи илмеççĕ. Тен, çывăх вăхăтра ку ыйтăва та лартас пулать. Конгресс ĕçне тивĕçлĕ шайра туса пырас тесен  унта профессионалсем кирлĕ. Ун чухне вара ĕçе йĕркеллĕ туса пыма май пулĕ.

*«Хыпар», 9.10.1993, 203№.*

## ЧНК ФОНЧĔН ĔÇĔ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ
### (Фонд директорĕн Николай Пыркинăн доклачĕ)

Чăваш Республикин Правительстви Чăваш наци конгресĕн фондне тунăранпа çулталăк иртрĕ. Çак кĕске вăхăтра фонд хăй умне лартнă чылай тĕллевсене ăнăçлă пурнăçлама пултарчĕ.

Иртнĕ çул хăш-пĕрисем малтан – Конгреса ирттерейместĕ, кайран – ăна ирттерме вуншар миллион укçа тăкнă тесе сахал мар элек сарчĕ. Усалăн сасси хытă янăрать пулсан та чăнлăха варалама пултараймасть.

Эпир сирĕнпе пĕрле чăваш халăхĕшĕн пархатарлă та вăхăтлă ĕçе, темле йывăр пулсан та, пĕчĕк тăкаксемпех ирттерсе ятăмăр. Сметăпа Конгресс ирттерме 3428,5 пин тенкĕ кирлĕ тесе пăхнăччĕ, анчах пурĕ те 2878 пин тенкĕлĕх тăкаклантăмăр.

Пĕтĕмĕшле Конгресс Фончĕ ячĕпе 4523,776  пин тенкĕ укçа кĕнĕ. Тăкаксене, тÿрех калас пулать, В.П. Мидуковпа тата А.П. Хусанкайпа

пăхса тухмасăр туман. Акă, Мускаври чăваш культура обществине, Культура министерствипе пĕрле çурмалла, пианино илсе патăмăр (ку ĕçе йӳнĕ хакпа хамăрăн йĕркелеме тӳр килчĕ). Вĕсем патнех Елчĕк районĕнчи Патреккел халăх ташăпа юрă ансамбльне ятăмăр.

Пухăннă укçапа халăхсен хушшинчи хутшăнусене пĕлме социологи тĕпчевĕ ирттернĕ çĕрте, аякри чăвашсен обществисене чăваш чĕлхине вĕрентме кĕнекесем тата ытти пособисем илме пулăшнă т. ыт. те. Пурне те асăнса та хăвараймăн.

Кунсăр пуçне пирĕн Фонд урлă çамрăксен политикине ĕçе кĕртмелли тĕрлĕрен мероприятисем ирттернĕ. Шăмăршăра иртнĕ ачасен уявне, Шупашкарта иртнĕ Тĕрĕк халăхĕсен Ассамблейин пухăвне те пулăшнă. Укçапа уйрăм тĕллевсене пурнăçланă ĕçре тĕрĕс усă курнă. Çавăн пекех укçа-тенкĕ Шупашкарти 6-мĕш вăтам шкула чăваш кĕписем çĕлеме, Çеçпĕл Мишшин юбилейне ирттерме хывнă, Пушкăртстанри К.В. Иванов музейне, Пăрачкав районĕнчи А. Крылов академик музейне пулăшнă, Кемĕр облаçне Тăвай районĕнчен пысăк ушкăн янă, хăшпĕр культурăпа искусство ветеранĕсене пулăшу панă, писательсене, культура ĕçченĕсене аякри чăвашсем патне командировкăна янă, чăваш чĕлхине вĕрентмелли пособисем кăларнă.

Паянхи кун Фонд счечĕ çинче 682863 тенкĕ юлнă.

Ĕнер ЧНКна ЧР Юстици министерствинче регистрациленĕ. Çитес вăхăтра унăн хăйĕн расчет счечĕ, пичечĕ пулмалла.

Юлашкинчен çакна каласшăн: пирĕн татса памалли ыйту нумай, анчах паянхи политикăн çивĕч ыйтăвĕсем çине кĕрсе каяс марччĕ. Конгреса шанакансене, пулăшакансене сиен кӳрес марччĕ. Чăваш халăхĕ пур халăхпа та килĕштерсе пурăнма хăнăхнă, çакна упрасчĕ.

*«Хыпар», 9.10.1993, 203№.*

## ТУЛАЙ ЧĂВАШĔСЕН ПĔРЛĔХ ТĔЛЛЕВĔСЕМ
### (ЧНК вице-президенчĕн Виталий Никитин-Станьялăн доклачĕ)

Чăваш наци конгресĕ тăван халăхăн тĕнче тăрăх пайрăммăн (дисперсно) тата чăпайййăн (компактно) сапаланнă йышне туллин курса тăма пуçларĕ. Тулай чăвашĕсен вăрăм ĕçтăрăмĕ (историйĕ) статистика, этнографи, археологи, сăмахлăх тĕслĕхĕсене тĕпченĕ майăн ытларах та ытларах уçăлса пырать. Паян пирĕн шухăш Чăваш Республики тăрăх кăна мар, авалхи Шумерпа ыранхи Атăл-Урал пĕрлĕхĕ çинче те, наци районĕсемпе Аслă Чăвашстан çĕр-шывĕн чиккисемпе те каллĕ-маллĕ хутлать. Çак анлă шухăшлава тиркекенсем тупăнаççĕ, анчах ăна танкпа та, тупăпа та чарма çук. Раççей Федерацийĕнче чăваш ячĕ вырăс, украин тата тутар хыççăн тăваттăмĕш вырăнта тăрать пулсан, хастарлăхпа, пурлăх-ырлăхпа, пурнăç шайĕпе Раççей Федерацийĕнчи вак халăхсен шутне кĕртнĕ 64 халăх хыçĕнче тăрать тесен те пысăк йăнăшах пулмасть. Çын пуçне тивекен çĕр лаптăкĕпе, шалу укçипе, килти автомашинăсемпе, ертсе пырас ĕçри вырăнсемпе, эрех ĕçессипе тата ыттипе чукча-ненец çыннисен шайĕнче эпир. Çак танлăх пур пирĕн. Урăх танлăх вара хут çинче кăна.

Чăнах çапла тесе тавлашса тăмастăп. Чылай-чылай енĕпе чăваш тĕнчери чи пысăк чысри аслă халăхсене те тĕслĕх кăтартма пултарать. Хресчен ĕçченлĕхĕ, пурнăç тирпейлĕхĕ, чун сăпайлăхĕ, йăла тытăмĕ Чăваш Республикинче те, тулай чăвашра та çирĕпех упранса пыратьха. XX ĕмĕр тăршшĕнче халь-халь арканас самант çитнĕ вăхăтсенче халăхăмăр икĕ ЧĔРĔЛӲ СЫВЛĂШНЕ туйса пăхрĕ. Пĕрремĕшĕ – 20-мĕш çулсем, иккĕмĕшĕ – Уççăнлăх (гласность) пирки калаçма пуçланă 90-мĕш çулсен чикки.

ЧĔРĔЛӲ чăваш халăхĕн тулайри 936 пин çыннине (51 процента) пĕр пекех çĕклентерчĕ темĕпĕр. Пушкăртстанпа Чĕмпĕр чăвашĕсем хăйсене хаклас енĕпе хăвăрт çĕкленсе аталанчĕç. Кунти 118 тата 116 пин чăваш валли «Урал сассипе» «Канаш» хаçатсем тухса тăни те çакна çирĕплетсе парать. 134 пинлĕ чăваш Тутарстанĕ «Сувар» хаçата никĕслерĕ. Самар, Пушкăртстан пекех 118 пин чăвашлă Самар чылайранпа хаçат тăвасшăн. Тĕрĕссипе, 20–30-мĕш çулсенче тухса тăнă хаçата чĕртесшĕн, облаçри администрацийпе ĕçлĕ те ăнланулă килĕшӳ тăвас вырăнне унта кĕрешӳллĕ тĕркешӳ пуçланчĕ пулмалла. Сызраньпе Шигон патĕнчен пуçласа Шунталпа Похвиçнĕ таранах сапаланнă халăхăн чăвашлăх туйăмĕ шалта пиççе çитменни те чарса тăрать. Шунтал, Эверккел, Тольятти, Сызрань тавралăхĕсенче культура кăвайчĕсем курăнмаллах çутатаççĕ пулсан та, Самарти тĕп вучах тавра пĕтĕçменни хăйсенех хыçран тапать. Оренбург, Екатеринбург, Челябинск, Курган, Пермь облаçĕсем, пĕтĕм Урал хутлăхĕ Пушкăртстан витĕмне кĕреймерĕ. Пурте хăйсем тĕллĕн тапаçланаççĕ. Удмурт чăвашĕсен ырă пуçарусем пайтах, анчах вĕсен опычĕ кӳршесене сарăлаймарĕ.

Урал ку енĕпе Атăл тăрăхĕнчи чăваш сапаланчăкĕсемпе чăпайĕсен (дисперсийĕпе компакчĕсен) кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ пичет урлă та, тăтăш тĕл пулусенчи калаçусенчен те витĕрех курăнса тăрать. Атăл-Урал хутлăхĕнчи чăваш ертӳçисен (пĕтĕм халăхăн тесе çирĕплетме иртерехха) пĕрлĕхĕ, килешĕвĕ пур тесе калама пултаратпăр. Пушкăртстанран А.А. Кондратьев, И.Г. Тарасов (Ĕпхӳ), Б.Л. Борлен (Стерлитамак). Ю.М. Михайлов (Пелепей), В.С. Музыкантов (Приютово) тата ыттисем хыпарласа-канашласах тăраççĕ. Чĕмпĕр ен пирки тата ырласарах калама пулать. Кунта ватăсемпе пĕрле яшсем те хастар. Хаçат редакцийĕ пĕтĕмпех мухтава тивĕç, телестудири О.Н. Мустаев кăларăмĕ паха. Вĕрентӳçĕсен квалификацине ӳстерекен институтри Вера Александровна Архипова питех те хастар пулнине, вăл чăваш шкулĕсене чĕртессишĕн И.Я. Яковлев вĕрентсе хăварнă пекех тăрăшнине палăртатăп.

Патшалăх тытăмĕнче Урал-Атăл конфедерацийĕ пуласси çинчен вирлĕ сăмах çӳрет. Ку, паллах, уйрăм калаçу. Шухăшĕ чăваш политологĕсемпе патшалăх çыннисене 1905 çултанпах кăсăклантарать. Чăваша вара Атăлпа Урал çеç мар, Инçет Хĕвел тухăçĕнчен пуçласа Калининград-Петербург таранах ют çĕр мар.

Хĕвел анăç Çĕпĕр хутлăхĕнчи Кемĕр, Тюмень, Çĕнçĕпĕр, Омск, Томск, Алтай, Хант-манси çаврисем хăйсен çирĕп сассине пачĕç. Ахăртнех, кунта Кемĕрпе Тюмень тавралăха çутатса тăма пуçлĕç.

Хĕвел тухăç Çĕпĕрте Хĕрлĕçыр хулипе крайĕ Читапа Иркут облаçĕсене, Хакаспа Ямал-ненец çĕрĕсене хăй тавра пĕтĕçтере пуçларĕ.

***

Кĕскен кăна чăваш культурин центрĕсемпе обществисен, ассоциацийĕсен, ентешлĕхĕсен ырă тĕслĕхĕсем çинчен каласа хăварам. Пушкăртстанри, Самарти, Чĕмпĕрти тата ытти çĕрти пĕрлĕхсем анлă плансемпе ĕçлеççĕ, палăртнине вăхăтра, ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ.

Тĕслĕх вырăнне Тюмень облаçĕнчи Чăваш культура центрĕн 1993 çул валли хатĕрленĕ планĕ питех те ăнăçлă. Плана облаç администрацийĕн культура комитечĕ çирĕплетнĕ. План 4 пайран тăрать. Пĕрремĕш пай – йĕркелӳ ĕçĕ-хĕлĕ. Унта Ярков районĕнчи культура керменĕнче Чăваш культурин центрне йĕркелессине, çак тĕслĕхпе ытти чăваш ялĕсенче те уçассине, ытти вырăнсенчи çавăн йышши культура центрĕсемпе çыхăну тытассине, Чăваш халăх çуртне тунă çĕре хутшăнассине, чăваш хаçатне уçассине тата ытти пысăк ĕçсене палăртнă. Иккĕмĕш пай – меслет ĕçĕ. Шупашкарта чăваш кĕнекисене меслет кабинечĕпе библиотекăсем валли туянасси, меслет кабинечĕсене мĕн пур культура центрĕсенче уçасси, семинарсем йĕркелесси, вĕренме ярасси, сценарисем, сĕнӳсем, кăтарту хатĕрĕсем çырса нумайлатасси. Виççĕмĕш пай – чи анли – халăхра ăспурлăх ĕçне тăвасси.

Кунта тем тĕрлĕ ĕç те палăртнă. Хĕр сăри, çăварни, мăнкун, акатуй тата ытти уявсем. Чăваш кĕнеке эрни, тĕл пулу каçĕсем, вырсарни шкулĕсем, пир-авăр мастерской-шкулĕ, хăва-çатан шкул мастерскойĕ. Илемĕш пултарулăх ушкăнĕсем – çамрăксен театр студийĕ, ташă ушкăнĕ, фольклор ансамблĕ, «Тантăш», «Чечек» ансамбльсем, юбилей каçĕсем, теле- тата радиокăларăмсем, Тюмень чăвашĕсен историне тĕпчемелли экспедици тата ытти ĕçсем. Юлашкинчен – хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕ. Чăваш музыка инструменчĕсем, тумтир, чăваш сăвви-юррин çырăнчăкĕсем, кăтартуллă суту-илӳ, парне тавраш туса сутасси... Куратăр: ку центр

планӗ самай сулӑмлӑ. Ӗҫӗ те пулса пырать. Мӗншӗн тесен ӑна хастар ҫынсем, ҫав шутра центр директорӗ Михаил Кузнецов ертсе пыраҫҫӗ. Вӗсене администраци хӑй тытӑмне илнӗ, шалу тӳлесе тӑрать.

Ытти обществӑсемпе центрсен те, тӗрӗссипе, ҫак тӗслӗхпе ӗҫлесен кӑна усси пулайӗ.

Чаллӑпуҫӗнчи (Самар облаҫӗ) Девлезеркинӑран Михаил Арсентьевич Саватнеев, Камчаткӑри «Канаш» общество председателӗ, тӑван енчен ӗҫе кайнӑ чухне Хабаровск, Приморье, Сахалин, Саха-Якути чӑвашӗсене пухса обществӑсем йӗркелеме хатӗррине пӗлтерет. «Халӗ 40–50 пин тенкӗпе ӑна туса хума пултарӑпӑр, кайран 100 пин те ҫитмӗ», – тесе ҫырать вӑл. 1992 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 3-мӗшӗсенче йӗркеленсе, ҫӗртмен 24-мӗшӗсенче регистрациленсе, кашни уйӑхра пӗрер пысӑк ӗҫ туса пырать «Канаш» общество. Вӑл ӗҫсенчен паллӑраххисем – Ҫӗнӗ ҫул, Нартукан, Ҫӑварни, Ҫимӗк, Питрав уявӗсене ирттерни, вырсарни шкулне йӗркелеме пӑхни, Шупашкара вӗренме культура ӑстисене яни, вӑйӑ картисем («проводы хоровода» теҫҫӗ вӗсем) ирттерни. «Ҫаксене ирттерме кӑштах укҫа-тенкӗпе пулӑшма ыйтатпӑр», – тенӗ М.А. Саватнеев. Казахстанри Чӑваш культура центрӗн президенчӗ В.М. Михайлов 1992 ҫулхи раштаврах 100 миллион тенкӗлӗх пулӑшу ыйтнӑ. Алма-Атара Чӑваш культурин комплексне тӑвасшӑн вӑл. Питӗ ырӑ тӗллев. Анчах Шупашкарта ЧНКн хӑйӗн те хӑнасене апат ҫитерме, ҫӗр каҫарма хӗсӗк пӳлӗм те ҫук-ха. Ахӑртнех, Шупашкар укҫапа пулӑшасса шанма та, ҫиленме те кирлӗ мар.

Пушкӑртстан Республикинчи Чӑваш культурин обществин планӗ пуян та сумлӑ. «Нарспи» суту-илӳпе промышленность фирмине ура ҫине тӑратнӑ чухне ӑна вӑрах вӑхӑта ҫӑмӑллатнӑ кредит 210 миллион чухлӗ кирлӗ... Ку пулӑшу урӑх статьяпа каять. Тӗрӗсссипе, ҫапла хире-хирӗҫле пулӑшу ытларах пайта пама пултарӗ. Инҫет Хӗвел тухӑҫӗнче Тинӗсҫум (Приморье), Хабаров енӗсем, Амур, Магадан, Сахалин облаҫӗсем Камчаткӑран тата Саха Республикинчен тӗслӗх илме пултараҫҫӗ. Эпӗ ку инҫетлӗхре пулса курман, унти туртӑмсене пӗлместӗп. Анчах унта та хӑйсен хутлӑхӗн центрӗ пулмаллах-тӑр тетӗп. Ӑҫта вӗҫсе пуҫтарӑнма меллӗрех Инҫет Хӗвел тухӑҫ чӑвашӗсене? Якутска-и, Сахалина-и, Владивостока-и? Регионра пуху, канашлу, уяв ирттерес пулсан Саха правительстви хапӑл тӑвассине пӗлетӗп.

Европӑри Раҫҫей, Тури Атӑл тӑрӑхӗ Шупашкарпа, Мускавпа, Питӗрпурпа ҫыхӑнса тӑрать. Пензӑпа Саратов Чӗмпӗрпе Самар пӗрлӗхӗнче хӑйсене меллӗрех туяҫҫӗ. Тулайри чӑпай чӑвашсен карттине пӑхса хутлӑхсен (регионсен) шӗкӗр вырӑнӗсене (столицисене, центрӗсене) палӑртасси паянхи лару ӗҫӗ тесе шутлатӑп. Ҫак ларурах регионсен Совечӗсене суйлама сӗнӳ тӑрататӑп. Сӗнӗве сӳтсе явнӑ хыҫҫӑн Мӑн Канаш татӑклӑ сӑмах каласа хӑвартӑр.

Иккӗмӗш сӗнӳ: регионсенче ЧНКн – Мӑн Канашпа вырӑнти пӗрлӗхсен – пухӑвӗсене, культура фестивалӗсене, йӑла кунӗсене черетпе е пӗр вӑхӑтрах ирттермелли йӗркене ҫирӗплетмелле. Мускавра, Чӗмпӗрте, Ӗпхӳре, Самарта, Хусанта, Анат Камӑра, Тюменьте, Кемӗрте тӗрлӗ пысӑк уявсем пулнӑ ӗнтӗ, ҫавӑнпа унта ЧӐВАШЛӐХ ЭРНИСЕНЕ е уйӑхӗсене ЧНК ячӗпе йӗркелесси йывӑр пулмӗ. Инҫет Хӗвел тухӑҫӗпе Ҫӗпӗр Тюмень, Кемӗр тӗслӗхне никӗсе хурса питех те сулӑмлӑ утӑм тума пултараҫҫӗ. Сӑмах литературӑпа фольклор, ӳнерпе илемӗш ӑстисен тӗл пулӑвӗсем ҫинчен мар. Халӑх хушшинче туса ирттернӗ ӗҫсене пӗтӗмлетмелли ӗҫ эрнисем (ӗҫкӗ эрнисем мар!) пулмалла.

Раҫҫей кӳршинчи патшалӑхсенчи – Узбекистанри, Казахстанри, Кӑркӑсстанри, Эстонири, Латвири, Украинӑри, Белоруссири, Молдовӑри тата ытти ҫӗрти чӑвашсен шӑпи – хӑйсене уйрӑм калаҫу. Лару-тӑру унта ҫӑмӑл мар. Хальчен йӗркеленнӗ обществӑсемпе центрсене аталанса пыма кансӗр.

Кунта манӑн Пӗрремӗш Конгресра салатса панӑ «Памятка активиста ЧНК» анкетӗна аса илме сӗнес килет. Унта палӑртнисене ҫултaлӑк хушшинче чылай вырӑнсенче ӑнӑҫлӑ пурнӑҫланӑ. Вырӑнти администрацие, хыпар органӗсемпе, хастар ҫынсемпе хутшӑнусем йӗркеленӗ, ентешлӗхсем, клубсем, фондсем, филиалсем, обществӑсем тата ытти те уҫнӑ. Чӑваш библиотекисен, шкулӗсен, класӗсен йышӗ паллӑ ӗнтӗ. Тӑван чӗлхе лару-тӑрӑвӗ те куранчӗ. Чӑваш ялӗсен тата йӑхташсем сапаланчӑк пурӑнакан вырӑнсен картотекине, тулайлӑх карттине тӑвасси пуҫланчӗ. Пушкӑртстанра, Чӗмпӗрте, Тюменьре, Пензӑра таврапӗлӗм ӗҫӗ вӑй илчӗ. Ҫакна чӑваш краевечӗсен кӑҫал ака уйӑхӗн 2-мӗшӗсенче пулса иртнӗ съезчӗ лайӑх кӑтартса пачӗ. ЧНКпа Чӑваш наци академийӗн ку ӗҫе малашне витӗмлӗрех тума май пур тесе шутлатӑп.

ЧНКна кӗрекен филиалсен, обществӑсен, центрсен, ассоциацисен ертӳҫисем наци, диаспора, культура ыйтӑвӗсемпе тухнӑ документсене ҫителӗклӗ пӗлменни палӑрчӗ. 1992 ҫултах пичетленнӗ «Концепция государственной программы национального возрождения народов РФ» документ, тӗслӗхрен, «Канаш» хаҫатра кӑҫалхи ҫурлан 28-мӗшӗсенче тин пичетленнӗ. Пичетленӗшӗн ырлатӑп, уттисем ӑна курман те иккен-ха. «Временное положение о национальном районе, национальном поселке, о национальном сельском населенном пункте в РФ» алӑ айне лекменни пайтах. Ку положение тӗпе хурса нумайнумай ҫӗрте наци ял канашӗсем, ялӗсем туса хунӑ ӗнтӗ. ЧНКн Чӗрӗлӳ Декларацийӗнче ҫак ӗҫе тума палӑртнӑ. Чӑваш тулайӗнче ку ыйтупа ӗҫлени ЧНКна паллӑ мар-ха.

ЧНК Мӑн Канашӗн е Культура министерствин наци политикии кабинечӗ кирлӗ. Наци политикин патшалӑх комитетне тӑвасси ҫинчен йышӑннӑ Резолюцие пурнӑҫламалла. Наци ялӗ, наци ял Канашӗ, наци районӗ туса хуни лайӑх. Анчах ӑна сурт ҫине ҫырса ҫапни тӑрӑх кӑна хаклас пулмасть. Шалти ӗҫне унсӑрах туса пыма пулать. Мӗнле ӗҫсем-ха вӗсем?

Пирваях тумаллисем – кашни урамра, ялта, хутлӑхра чӑваш йӑлисене, самоуправление йӗркелесе пыракан ҫынсене палӑртасси, вӗсене пулӑшасси, халӑх умӗнче ятран асӑнса ҫирӗплетесси. Ку вӑл администрацие, хуҫалӑхпа ӗҫлекен ҫын пулмаллине пӗлтермест. Вӑл ватӑ пенсионер та, ҫамрӑк избач та, чӑртмах председатель те пулма пултарать. Халӑх хисеплекен, итлекен, сума сӑвакан кирек хӑш хастар та, маттур ҫын та ҫак йӗркелӳҫӗ пулма пултарать. Тӗне кӗмен чӑваш ялӗсенче ку ӗҫе мӑчавӑрсем, эптер-элменсем хӑйсем ҫине илме тивӗҫ. Вӗсен тӗп тӗллевӗ – халӑхӑн ҫирӗпленнӗ йӑлисене, этикетне, тытӑмне аталантарса, йӗркелесе, майлаштарса тӑрасси.

Пӗрремӗш Конгреса хатӗрленнӗ чухне «Устава ӑнлантарса пани» ятлӑ хут пичетленӗччӗ. Ӑна тиркекенсем тупӑннӑ пирки халӑх умне кӑлармарӑмӑр. Халӗ унӑн пӗр сыпӑкӗпе паллаштарас тетӗп.

Вӑл «Халӑх хуралне йӗркелесси» ятлӑ. Уставӑн III пайӗпе (ЧНК членӗсем) ҫыхӑнса тӑрать.

Уставра палӑртнӑ тӑрӑх, ЧНК ушкӑнлӑ членӗсен шутӗнче халӑх юхӑмӗсем, наци культурин обществисемпе ассоциацийӗсем, общество организацийӗсем, патшалӑх тата харкам предприятисен, учреждениесен ӗҫ ушкӑнӗсем (Кӗҫӗн Канаша хӑйсен йышӑну хучӗсене панӑ хыҫҫӑн) тӑма пуҫлаҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, ЧНК пӗтӗм чӑваш халӑхӗн пӗрлӗхӗ пулнине шута илсе, ял-хуласенче Халӑх хуралӗн мелӗпе усӑ курма юранине палӑртатпӑр. Халӑх Хуралӗ чӑваш ялӗнче авалтанпах пулнӑ. Ӑна лайӑхлатса ҫӗнетмелле, хальхи вӑхӑта тивӗҫлӗ улӑштарса малашне те ӑнӑҫлӑ усӑ курмалла. Халӑх хуралӗ тӗрлӗ йышран, тӗрлӗ ӳсӗмри, тӗрлӗ ӗҫри ҫынсенчен тӑма пултарать. Пысӑк ялта темиҫе хурал, кӳршӗллӗ пӗчӗк ялсенче пӗр хурал тума юрать. Хурал пуҫӗнче администраци, хуҫалӑх, тӗн, шкул ӗҫлевҫи, пенсионер-ӑсчах, общество, ансамбль, ентешлӗх ертӳҫи, культура, вӗрентӳ, йӗркелӳ ӗҫченӗ тата кирек хӑш шаннӑ ҫын та пулма пултарать. Ҫирӗпленнӗ йӑласене, ҫынсене лайӑх пӗлекен тата вырӑнти халӑх хисеплекен ҫынна уйӑрма сӗнетпӗр. Хурал йышӗнче ҫак ӗҫсене йӗркелесе пыракансем пулмалла:

1. Ялти Ниме Пуҫӗ (хуҫалӑх, ал ӗҫ, хушма производство ӗҫне-хӗлне йӗркелекен, урамсене, ҫулсене, ватӑсене тимлекен хастар ҫын).

2. Ҫирӗпленнӗ йӑласене йӗркелекен Мӑчавӑр (ҫулталӑкри тата

ял-йышри уявсене, кунсене, вăл шутра туй, акатуй, чўк, салтака ăсатни, пытару ĕçĕсене ертсе пыракан ăста çын).

3. Шкул, вулавăш, клуб, яш-кĕрĕм ĕçĕ-хĕлĕнчи тăван чĕлхепе ăспурлăх йĕркине асăрхаса тăракан Тĕрĕслевçĕ (пичетре, канашлу-ларусенче тухса калаçма, ертсе пыракан органсене кĕме хатĕр çын).

4. Тăван тавралăха тĕпчекен, аваллăха упракан краевед – Хурал çыруçи–Хыпарçи (вăл музей, мухтав пÿлĕмĕ, кĕтесĕн ертÿçи, Хурал çÿретекен мĕн пур хутсене тирпейлесе, хуравласа тăракан ÿркенми ĕçлĕ çын).

Вырăнти майсене, кирлĕлĕхе кура Хурал йышĕ пĕчĕкрех те, пысăкрах та пулма пултарать. Анчах вăл чăннипех вĕри чунлă, тăван халăх ĕçне юратакан çынсенчен тăмалла.

Халăх Хуралĕ хăйсене тĕллĕн, анчах администраципе тата ытти органсемпе килĕштерсе ĕçлемелле. Пенсионер мар халăх хуралçисем хăйсен çак тивĕçĕсене тÿрĕ килекен шалуллă вырăнсенче (библиотекăра, клубра, администрацире тата ытти çĕрте) пулни лайăх.

*«Хыпар», 9.10.1993, 203 №.*

# ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН УСТАВĔ

*Чăваш халăхĕн 1992 çулхи юпа уйăхĕн 8–9-мĕшĕсенчене пулнă Конгресĕн делегачĕсем йышăннă*

**1.1.** Чăваш наци конгресĕ (малалла – ЧНК) – чăваш нацийĕн творчество, интеллект тата культура вăйне пĕрлештерекен тата наци пĕрлĕхне çĕнĕрен вăй илтерес, аталантарас тĕллевпе ĕçлекен общество организацийĕ.

**1.2.** ЧНК пĕтĕм чăваш халăхĕн социаллă пурнăç тата наципе культура интересĕсене палăртать тата, чăваш çыннисем ăçта пурăннине пăхмасăрах, тĕнчери право нормисемпе килĕшÿллĕн этем прависемпе ирĕклĕхĕсене çирĕп пăхăнассишĕн тăрăшать.

**1.3.** ЧНК хăйĕн ĕçне-хĕлне вăйра тăракан законсемпе тата çак Уставпа килĕшÿллĕн Чăваш Республикин территорийĕнче тата чăвашсем пĕр вырăнта йышлăн пурăнакан регионсенче туса пырать.

**1.4.** ЧНКн ертсе пыракан органĕсем вырнаçнă вырăн: Шупашкар хули, Чăваш Республики.

**1.5.** ЧНКн чăваш нацийĕн интересĕсемпе тĕнчери правительствăсен шутне кĕмен, регионсем хушшинчи тата правительствăсем хушшинчи организацисенче чăваш нацийĕн интересĕсене палăртмалли право пур.

**1.6.** ЧНК Гимнĕ – чăвашсен авалхи юрри «Алран кайми аки-сухи», официаллă элемĕ – Шурăмпуç çăлтăрĕ (чăвашсен кĕскĕ тĕрри).

**II. Тĕллевсем тата тĕп задачăсем**

ЧНК ĕçĕ-хĕлĕн тĕллевĕсем:

**2.1.** Чăваш Республикин патшалăх влаçĕпе управлени органĕсенче, общество организацийĕсенче чăваш халăхĕн хăй тĕллĕнлĕх тĕлĕшĕнчи уйрăлми правине хÿтĕлесси.

**2.2.** Чăваш Республикин 1990 çулхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕсенче йышăннă Патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан декларацийĕн принципĕсене пурнăçа кĕртме пулăшса тăрасси.

**2.3.** Закон кăлармалли пуçарулĕх правине пурнăçласа пырасси.

**2.4.** Патшалăх влаçĕн тата управленийĕн органĕсене йĕркелеме тата чăваш нацийĕпе чĕлхине, экологие тата чăваш культурине аталантарас, чăваш халăхĕн ăс-хакăлпа пурлăх пуянлăхĕсене упрас ыйтусем тăрăх вĕсен йышăнăвĕсене хатĕрлеме хутшăнасси.

**2.5.** Халăхăн наци ăнланăвне аталантарасси тата чĕлхе суверенитетне хÿтĕлес, чăваш чĕлхине, наци культурине тата йăли-йĕркине упрас тĕлĕшпе мерăсем йышăнасси, наци вĕренĕвĕн тытăмне туса хурасси.

**2.6.** Уралпа Атăл тăрăхĕнчи халăхсем хушшинче информаци тата культура енĕпе ылмаштарса тăрасси, Чăваш Республикин, Раççей Федерацийĕнчи, НПППри (СНГри) тата чикĕ леш енчи наци-демократи юхăмĕсемпе тата ытти общество пĕрлешĕвĕсемпе тытакан çыхăнусене йĕркелесси, вĕсене аталантарасси.

**III. ЧНК членĕнче тăрасси**

**3.1.** ЧНК ирĕклĕ йĕркепе членра тăни тата интерессен пĕрлĕхĕн никĕсĕ çинче йĕркеленнĕ, хăйĕн ĕçĕсене хăй ертсе пыракан общество организацийĕ шутланать. Чăвашсем йышлăн пурăнакан вырăнти наци юхăмĕсем, наци культура обществисемпе ассоциацийĕсем, общество организацийĕсем, патшалăх тата уйрăм çын предприятийĕсен ĕç коллективĕсем, ăслăлăх учрежденийĕсем, çавăн пакех уйрăм çынсем унăн членĕ пулма пултараççĕ.

**3.2.** Çак Устава йышăнакан тата унăн тĕллевĕсемпе задачисене пурнăçа кĕртме хутшăнакан çынсем ЧНКра уйрăмшарăн членра тăраççĕ. Коллективлă членсем ЧНКн Мăн Канашне коллектив ЧНК членне кĕме йышăннă пуху протоколĕнчен çырса илнине тăратаççĕ.

**3.3.** ЧНК членĕн çакăн пек право пур:
– унăн ĕçне-хĕлне хутшăнма, ЧНКн ертсе пыракан органĕсене суйлама тата суйланма;
– Устав тĕллевĕсене пурнăçланă чухне ЧНКран пулăшу илсе тăма.

**3.4.** ЧНК членĕсен тивĕçĕсем:

– çак Устав положенийĕсене пăхăнасси;

– ЧНКн ертсе пыракан органĕсен йышăнăвĕсене пурнăçласси;

– Уставри ĕçсене пурнăçланă чухне ЧНКна пулăшса тăрасси.

**3.5.** ЧНК членĕсен организацирен ирĕклĕн тухмалли прави сыхланса юлать.

**3.6.** ЧНК членĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çак Устава хирĕçлет пулсан, вĕсене ЧНК Мăн Канашĕ унăн членĕсен иккĕ-виççĕмĕш пайĕ сасăласа йышăннă тăрăх ЧНКран кăларма пултараççĕ.

**IV. Йĕркелÿ тытăмĕ**

**4.1.** Чăваш халăхĕн делегачĕсен Конгресĕ (малалла – Конгресс) ЧНКн аслă органĕ шутланать, ăна икĕ çулта пĕр хутчен е кирлĕ пулнă чухне пухаççĕ.

Конгресс ЧНК ĕçĕ-хĕлĕн тĕп çул-йĕрĕсене туса хатĕрлет, Устава, программа докуменчĕсене çирĕплетет, ЧНКн ертсе пыракан органĕсене тата президентне, çавăн пекех ревизи комиссине суйлать.

**4.1.1.** Конгресс йышăнăвĕсене делегатсем ахаль ытларах сасăпа йышăнаççĕ.

**4.1.2.** Конгресăн ЧНК Уставне улшăнусем тата хушăмсем кĕртмелли полномочи пур.

**4.1.3.** Конгресс йышăнăвĕсем унта делегатсен çурринчен кая мар хутшăннă пулсан правомочиллĕ шутланаççĕ.

**4.2.** Конгрессем хушшинчи талхăрта Мăн Канаш ЧНКн ертсе пыракан органĕ шутланать, ăна 60 çынран кая мар йышпа икĕ çуллăха суйлаççĕ.

**4.2.1.** Мăн Канаш ĕçĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

– ЧНКна илесси тата унран кăларасси;

– Конгресс пухасси тата делегатсен квотине палăртасси;

– ЧНКн вырăнти уйрăмĕсен тата тытăмĕсен ĕçне-хĕлне йĕркелесе тăрасси;

– ЧНК Фондĕнчи укçа-тенке йĕркеленине, унпа усă курнине тата ăна тăкакланине тĕрĕслесе тăрасси;

– ЧНК президенчĕ тăратнипе Мăн Канаш членĕсенчен ЧНКн Кĕçĕн Канашне суйлаcси;

– ЧНК Фончĕн ĕç тăвакан директорĕн тата чăвашсен пĕтĕм наци хаçачĕн редакторĕн кандидатурисем енĕпе сĕнÿсем йышăнасси.

**4.22.** Мăн Канаш членĕсен пухăвне кирлине кура, çавăн пекех унăн членĕсен пĕрре-виççĕмĕш пайĕнчен кая мар ыйтнилпе, анчах ултă уйăхра пĕр хутран кая мар ирттерессĕ.

**4.3.** Кĕçĕн Канаш ЧНКн ĕç тăвакан органĕ пулса тăрать тата унăн решенийĕсене пурнăçа кĕртет.

**4.3.1.** Кĕçĕн Канаш 9 члентан тăрать: ЧНК президентĕнчен, диаспора енăпе ĕçлекен вице-президентран, йĕркелÿ енĕпе ĕçлекен вице-президентран, ЧНК Фончĕн ĕç тăвакан директорĕнчен тата ытти членсенчен.

**4.3.2.** ЧНК Кĕçĕн Канашĕ:

– ЧНК Уставĕн тĕллевĕсене тата тĕп задачисене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлемелли мерăсене тӳрремĕнех йышăнать;

– ЧНК Мăн Канашĕ тата Конгресс йышăнмалли документсен, йышăнусен проекчĕсене хатĕрлет;

– кирлĕ чухне ЧНКн канашлакан органĕсене йĕркелет;

– Мăн Канашра ЧНКн çĕнĕ членĕсене тăратать;

– ЧНК ĕçĕн планне пăхса тухать тата çирĕплетет, тăкаксемпе тупăшсен пĕтĕмĕшле сметине пурнăçа кĕртмелли сĕнӳсем парать;

– ЧНК Фондне йĕркелеме куллен-кун пулăшса тăрать.

**4.3.3.** ЧНК Кĕçĕн Канашĕн ларăвĕсене уйăхра пĕр хутран кая мар, çавăн пекех кирлĕ пулнине кура ирттерессĕ.

**4.3.4.** Кĕçĕн Канаш хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчан ЧНКна вăхăтран-вăхăт пĕлтерсе тăма тата Мăн Канаш ларăвĕсенче отчет тума тивĕçлĕ.

**4.4.** ЧНК президенчĕ ЧНКн аслă должноçри çынни шутланать, ăна çĕнĕрен суйланмалли правăпа икĕ çултаăклăха суйлаççĕ.

**4.4.1.** ЧНК президенчĕн тивĕçĕсем:

– ЧНКна ертсе пырасси;

– ЧНКн Кĕçĕн тата Мăн Канашĕсен ларăвĕсене пухасси тата ертсе пырасси;

– ытти организацисемпе тата патшалăх влаçĕпе управлени органĕсемпе тытакан хутшăнусенче ЧНК ячĕпе ĕçлесси;

– ЧНК Мăн Канашне ЧНК ĕçĕ-хĕлĕ çинчен кашни çулах отчет тăратасси;

– банк счечĕ уçасси тета унти укçа-тенкĕпе ЧНКн çак Уставра палăртнă тĕллевĕсемпе задачисене пурнăçлас ĕçре усă курасси;

– укçа-тенкĕпе усă курас пирки кулленхи решенисем йышăнасси;

– хăй палăртнă çынсенчен ЧНК Кĕçĕн Канашĕн секретариатне йĕркелесси.

**4.5.** ЧНК фончĕ Чăваш Республикин Министрсен Совечĕ Фонд çинчен çирĕплетнĕ положенипе килĕшӳллĕн ĕçлет.

**4.6.** Чăвашсен пĕтĕм наци хаçатне ЧНК туса хурать, ăна валли çумйĕркелӳçĕсем тĕллевлĕн хывнă шутран, организацисем тата çынсем хăйсен ирĕкĕпе хывнă тата пулăшу йĕркипе панă шутран укçа-тенкĕ парса тăма пултараççĕ.

**4.7.** 5 çынран тăракан ревизи комиссийĕ, çак Устава тата вăйра тăракан законсене тĕпе хурса, ЧНК Кĕçĕн Канашĕн, ĕç тăвакан ытти тытăмсен финанс тата ытти ĕçне-хĕлне кашни çулах ревизи тăвать.

**4.8.** ЧНКн регион тытăмĕ пур. Унăн вырăнти уйрăмĕсене республика, область, край, округ, хула, район тата ял Совечĕн шайĕнче чăваш диаспорин представителĕсенчен йĕркелеççĕ.

**4.9.** ЧНКн вырăнти уйрăмĕсем хăйсен ертсе пыракан органĕсене – Канашĕсене суйлаççĕ, вĕсен йышне пайăр регионти чăваш халăхĕн наци культура интересĕсене пурнăçламалли уйрăмлăхсене шута илсе палăртаççĕ.

**4.10.** ЧНКн вырăнти уйрăмĕсен Канашĕсем хăйсен ĕçне-хĕлне Мăн Канашпа килĕшсе йĕркелеççĕ, вăхăтран-вăхăт Кĕçĕн Канаша хăйсен пуçарăвĕсем тата пурнăçлакан мероприятисем çинчен пĕлтерсе тăраççĕ.

**V. Право статусĕ. Пурлăх тата укçа-тенкĕ**

**5.1.** ЧНК тата ЧНК Фончĕ юридици вăйĕнче тăракансем шутланаççĕ.

**5.2.** ЧНКн официаллă элемлĕ, хăйĕн ятне çырнă пичет, бланксем, фирма палли тата ытти реквизитсем, банк учрежденийĕсенче расчет счечĕ тата ытти счетсем пур.

**5.3.** ЧНК укçи-тенкине организацисем тата уйрăм çынсем хăйсен ирĕкĕпе хывнă тата пулăшу йĕркипе панă, ЧНК Уставĕпе килĕшӳллĕн ирттерекен мероприятисенчен пырса кĕнĕ, çавăн пекех закон йĕркипе чарман ытти çăл куçсенчен илекен укçа-тенкĕ шучĕпе йĕркелеççĕ.

**5.4.** ЧНК тата унăн ĕç тăвакан тытăмĕсен ĕçĕ-хĕлĕ валли ЧНК Фончĕн, Фонд çумйĕркелӳçисем тĕллевлĕн хывнă, организацисем тата уйрăм çынсем хăйсен ирĕкĕпе хывнă тата пулăшу йĕркипе панă шутран укçа-тенкĕ парса тăраççĕ.

**5.5.** ЧНК харпăрлăхне çурт-йĕр, производство, социаллă пурнăç, ыр кăмăллăх, культурăпа çут ĕç пĕлтерĕшлĕ объектсем, укçа-тенкĕ тата Устав тĕллевĕсемпе задачисене пурнăçлама кирлĕ ытти пурлăх кĕме пултареççĕ.

**5.6.** ЧНКн хăйĕн нушисем тата Уставри ĕçĕ-хĕлĕ валли патшалăх тата общество организацийĕсем, çавăн пекех граждансем килĕшӳ йĕркипе панă территорипе, çурт-йĕрпе тата пурлăхпа усă курмалли право пур.

**5.7.** ЧНК вăйра тăракан законсем палăртнă йĕрке тăрăх çĕрпе усă курать.

**5.8.** ЧНКн, законсемпе килĕшӳллĕн, çак Устава тĕпе хурса производство, ӳнер, тĕпчев, культура, ял хуçалăх, финанс, коммерци предприятийĕсем, юридици вăйĕнче тăракансен правипе усă куракан ытти предприятисем, организацисем тата учрежденисем туса хумалли право пур.

**VI. ЧНК ĕçне-хĕлне чарса лартасси**

**6.1.** ЧНК чăваш халăхĕн делегачĕсен Конгресĕ делегатсен иккĕ-виççĕмĕш пайĕнчен кая мар сасăласа йышăннă тăрăх е вăйра тăракан законсемпе килĕшӳллĕн суд йышăннă тăрăх хăйĕн ĕçне-хĕлне чарса лартать.

**6.2** ЧНК хăйсене хăй салатсан е ăна пĕтерсе хурсан ликвидаци комиссийĕ туса хураççĕ, вăл çак Уставпа тата вăйра тăракан законсемле килĕшӳллĕн пурлăх, укçа-тенкĕ тата ытти пуянлăх шăпине татса парать.

Чăваш наци конгресне тата
унăн Уставне Чăваш Республикин Юстици министерстви
1993 çулхи юпа уйăхĕн 6-мĕшĕсенче регистрациленĕ.
Регистрациленни çинчен 158-мĕш свидетельство панă.
*«Хыпар», 9.10.1993, 203№.*

## ЧĂВАШ ТА ШУТЛАТЬ, ЧĂВАШ ТА ШЫРАТЬ

*Çурла уйăхĕн 13–15-мĕшĕсенче Тарту хулинчен инçех мар вырнаçнă Пухеярве кану çуртĕнче «Совет Союзĕ пулнă республикăсем тата халăхсем демократизаци тата рынок экономикине куçасси» темăпа тĕнчери конференци иртнĕ. Çак конференцие ирттерекенсем: Тĕнчене тухайман халăхсен организацийĕ (ТТХО), Германири Конрад Аденауэр фончĕ, Эстони парламенчĕ, Панъевропа юхăмĕ. Кунта пухăннисем паянхи Германири политикăпа экономика лару-тăрăвĕпе, Эстонин рынок экономикине куçса пырас опычĕпе тĕплĕн паллашнă. Кунсăр пуçне, Атăлпа Урал тата Çĕпĕр тăрăхĕнче пурăнакан халăхсен халĕ те татса параймаи çивĕч ыйтăвĕсене тишкернĕ. Хăйĕн ĕçне пĕтĕмлетсе ТТХО конференцийĕ ООНа, патшалăх ертӳçисемпе правительство пуçлăхĕсене, тĕнчери халăхсене чĕнсе каланисене йышăннă.*

*Пирĕн корреспондент çак конференци ĕçне Чăваш наци конгресĕн ячĕпе хутшăннă Ипполит Агаковпа тĕл пулса калаçнă.*

**– Пысăк пĕлтерĕшлĕ, тĕнче политикин шайĕнче иртнĕ çак конференцие Чăваш наци конгресĕн секретариачĕн ертӳçи хутшăннине мĕнле ăнлантаратăр?**

– Паллах, кун пек пысăк конференцисене Чăваш наци конгресĕнчен яланах унăн президенчĕ хутшăнни кирлĕ, шел те, А.П. Хусанкай кăштах чирлекеленĕрен манăн, ЧНК секретариачĕн ертӳçин, тата Конгресăн пресс-секретарĕн Ирина Миттан хутшăнма тиврĕ.

Тĕнчене тухайман халăхсен конференцийĕ хăй йĕркеленсе кайни çинчен 1991 çулта Гаага хулинче иртнĕ 1-мĕш Тĕп (Генеральнăй) Ассамблейăра пĕлтернĕ. 80-мĕш çулсенче Совет Союзĕнчи республикăсенчи халăхсен политика пуласлăхĕшĕн йĕркеленнĕ тĕрлĕ юхăмсемпе партисем хушшинче Эстонири академилле Тухăç обществи чи витĕмлисенчен пĕри пулнă. Çавăнпа та ТТХО пуçаруçи вăлах пулнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар. Çак организацин тĕп тĕллевĕ – халĕччен ООНа кĕмен халăхсен самоуправлени, гражданлăх тата политика, экономика тата социаллă пурнăç, культура прависене хӳтĕлесси. Çак организацин тĕллевĕ чăваш халăхĕн те политика тата экономика

малашлăхе пултăр тенипе тӳр килни пире, ытти «вак» халăхсем пекех, унăн тулли праваллă членĕ пулма май парать.

**– Тулли праваллă тесе калатăр та-ха, тĕрĕссипе, Чăваш Республики хăй-и, ҫавна май Чăваш правительстви-и, Чăваш наци конгресĕ-и, кам е мĕн тата мĕншĕн унăн тулли правалла членĕ шутланать?**

– ТТХОна, унăн Уставĕпе илĕшӳллĕн, патшалăхсем, правительствăсем, патшалăхсен официаллă органĕсем кĕме пултараймаҫҫĕ, мĕншĕн тесен вăл патшалăхсене мар, никама пăхăнман патшалăх йĕркелесе ҫитереймен халăхсене пĕрлештерсе тăрать. ТТХОна Чăваш Республики е унăн парламенчĕпе правительстви мар, чăваш халăхĕ, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ А.П. Хусанкай ыйтса ҫырнипе, ТТХОн 3-мĕш Тĕп Ассамблейинче тулли правалла член пулса кĕнĕ. Енчен те ТТХОра тăракан халăх хăйсене килĕшекен никама пăхăнман патшалăх туса хурсан, ирĕклĕ ҫав патшалăха ирĕклĕ ытти патшалăхсем йышăнсан вăл хăйĕн тĕллевне пурнăҫлать, ТТХОран тухса ООНа кĕрет. Пирĕн тĕллев те ҫавнашкал.

**– ЧР Президенчĕ, Патшалăх Канашĕ, Министрсен Кабинечĕ пур. Вĕсен ĕҫлемелле мар-и ҫак ыйтупа? Патшалăхăн официаллă органĕсен пĕлтерешне пĕчĕклетсе хăварăн полномочисене ӳстернĕ пек туйăнмасть-и?**

– Туйăнмасть. Пирĕн Чăваш Республики хăйĕн ячĕпе Эстони е Грузи республикисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Эстонипе Грузи ĕнер союзлă республикăсем, Чăваш Ен автономиллĕ республика пулнă пулсан, паян эпир ят енчен ĕнерхи Совет Союзĕнчи пур республикăсемпе те пĕр пекех. Анчах та республикăри политика, экономика, культура, халăх пурнăҫĕн шайне хамăр кăна татса парас енĕпе эпир уйрăлса тăратпăр. Республика Конституцине президент институчĕ пирки улшăнусем кĕртнĕ чухне Аслă Канаш депутачĕсем, Чăваш наци конгресĕ, партисемпе юхăмсем патшалăх суверенитетне ҫирĕплетме ҫĕнĕ мелсем йĕркелессе шаннăччĕ. Республикăра Президент, Патшалăх Канашĕ, Министрсен Кабинечĕ, Ялав, Герб, Гимн пурри кăна эпир те Эстонипе пĕр пек теме май памасть ҫав. «Суверенитет» сăмаха юлашки вăхăтра патшалăхăн официаллă ертӳҫисем асăнма пăрахрĕҫ. Наци юхăмĕн хăш-пĕр шухăшĕсем, тĕллевĕсем патшалăх программине кĕни, паллах, хавхалантарать. Анчах культура, уйрăмах халăха вĕрентес ĕҫ ыйтăвĕсем улшăнманни нумай шухăшлаттарать. Патшалăх институчĕсене ҫирĕплетес ыйту та ҫав шайрах-ха. Халĕ те Конституци сучĕ ҫукки пăшăрхантарать. Вăраха ямасăр гражданлăх ҫинчен саккун йышăнасчĕ, унсăрăн республика харпăрлăхĕн ыйтăвĕсене халăха килăшмелле татса пама май ҫукки куҫ кĕретех. Наци банкĕ те ячĕшĕн кăна ан пултăрччĕ. Тĕрĕссипе, республикăра татса паман ҫивĕч ыйтусем туллиех: конкурентлă тавар кăларасси, предпринимательсене кирлĕ пек интереслентерессиг, инвестици политики тата ҫĕр ыйтăвĕ. Паллă ĕнтĕ, ку ыйтусене Конституци шайĕнче татса памалла. Ку енĕпе вара чăн-чăн демократиллĕ ҫĕр-шывра патшалăхăн кăна мар, нумай чухне партисемпе юхăмсен пĕлтерĕшĕ те пысăк. Йĕркеллĕ патшалăхăн хăйĕн халăхĕн, суйлавҫăсен, политика вăйĕсен шухăшĕсене шута илмеллех. Малашлăх пирки шутласан – чăваш юриспруденцийĕ (Граждан кодексĕпе Уголовнăй кодекс) пулмалли те иккĕлентермест. Раҫҫейпе интеграци ҫыхăнăвĕ урлă ҫеҫ ĕҫлени пăшăрхантарать.

Чăваш диаспори ҫинчен те ҫиелтен ҫеҫ калаҫатпăр паян. Чĕмпĕр, Самар чăвашĕсен кăткăс ыйтăвĕсене чăваш халăхĕпе ҫыхăнтарса, Раҫҫей Федерацийĕн Конституцийĕпе усă курса паянхи кун йĕркине тăратма май пур. Демографи ыйтăвне Гражданлăх саккунĕпе ҫыхăнтарасчĕ. Сăмах май, Тартури конференцире шăпах ҫак ыйтусене хускатнă.

**– Тема тăрăх пăхсан ҫак конференцин тĕп ыйтăвĕсен шутне рынок экономикине епле куҫасси те кĕрет. Пирĕн республикăри экономика лару-тăрăвне лайăхлатма май паракан мĕнле ҫĕнĕ шухăш асăрхама пултартăр конференцире?**

– Пирĕн республика шăпине, политика тĕллевне ҫирĕпрех палăртма рынока кĕрес тапхăрта пирĕн патшалăхăн хăйĕн те предпринимательпек пулмалла (чăваша чăвашăн ҫĕр-шывĕнчех упраса хăварас тетпĕр пулсан). Гуманизм принципĕсене пăхăнакан обществăра ҫеҫ рынок кирлĕ пек аталанма пултарать. Конкуренци пур ҫĕрте социаллă хӳтлĕх те пулмаллах. Ку ыйтăва патшалăхăн, парламентăн тивĕҫлĕ татса памалла, уйрăмах налук, харпăрлăх, мул-пурлăх енĕпе.

Хальлĕхе эпир ирĕклĕ рынок экономики пирки ҫеҫ калаҫатпăр, нимĕҫсен шучĕпе, ҫак рынок ирĕклĕхне социаллă хӳтлĕхсемпе (медицина, вĕрентӳ тата пенси ыйтăвĕсене вăхăтра татса парасси тата ĕҫсĕррисене пулăшасси) ҫирĕплетмелле Нимĕҫлетсе кĕскен ҫапла калама пулать: ирĕклĕ рынок экономики мар, социаллă рынок экономики кирлĕ пире паян.

**– Аслă шухăшсемпе канашсемсĕр пуҫне ТТХОра тăни чăваш халăхне тата мĕнле те пулсан усă кӳме пултарать-и?**

– ТТХО – патшалăхсен шалти ĕҫĕсене хутшăнман организаци. Унăн тĕллевĕ – халăхсен политика ăс-тăнне, наци хăй евĕрлĕхне аталантарасси, ку енĕпе тĕнче опычĕпе паллаштараоси. Анчах та никама пăхăнманлăхшăн кĕрешекен халăх йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳксен ТТХО тĕнчери право принципĕсене тĕпе хурса пулăшу парать.

Ҫак конференци те Чечен Республикипе Абхаз Республики никама пăхăнманлăхшăн кĕрешнине чарса лартас тĕллеве сивлерĕ. Тĕнчери патшалăхсен ертӳҫисене, парламентсене, правительствăсене тата тĕнчери халăхсене ҫак икĕ халăха пулăшма уйрăммăн чĕнсе каларĕ.

Иккĕленӳ те пулма пултарать: Эстони опычĕ, чечен, абхаз, тутар халăхĕсен ҫивĕчленнĕ политика кĕрешĕвĕ чăваш халăхĕшĕн усăллă-и? Хальлĕхе хурав пама хĕн. Анчах та ҫакă паллă: чăваш та шутлать, чăваш та ҫырать, пурнăҫран юлма ҫуккине вăл та сисет.

Римма ГУРЬЯНОВА калаҫнă.
*«Хыпар», 26.08.1994, 172№.*

# ЧĂВАША – ПĔРТАНЛĂХ!

## (Чăваш Республикин Президентне Н.В. Федорова тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Уҫă ҫыру)

Чăваш Республикин патшалăх суверенлăхĕ ҫинчен калакан декларацие йышăннăранпа кăҫалхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕсенче тăватă ҫул ҫитет. Ҫак хушăра чăваш халăхĕн историйĕнче ҫырăнса юлмалли пысăк ĕҫсем сахал мар пулса иртрĕҫ. Тăван чĕлхемĕр патшалăх чĕлхин статусне илчĕ, тĕнче тăрăх сапаланнă чăвашсемпе ҫыхăнусем йĕркеленчĕҫ. Республикăн пĕрремĕш Президентне суйларăмăр, профессиллĕ майпа ĕҫлекен парламент – Патшалăх Канашĕ ура ҫине тăчĕ.

Чăн та, Совет влаҫĕ пирĕн халăха автономи пани хăй вăхăтĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Суверенлăх ҫинчен калакан декларации – хăй тĕллĕнлĕхпе ирĕклĕх енне тунă тепĕр утăм: вăл пире, Атăлҫи Пăлхар ҫĕр-шывне аркатнă хыҫҫăн патшалăх тĕрекне сухатнă, ҫавна пула нумай асап-терт курнă чăвашсене, пуласлăха шанса пăхма, тĕнчери халăхсен пĕрлĕхне ыттисемпе тан пулса кĕме майсем уҫать. Вырăс тата ытти халăхсем пекех, чăваш халăхĕ те хăй пурнăҫне хăй пĕлнĕ пек йĕркелесе пырасшăн. Шовинистла кăмăл-туйăмлă ҫынсем ҫак декларации Чăваш Республикине Раҫҫейпе вăрҫтарса яма пултаракан сăлтав пек кăтартасшăн ăнтăлнине татăклăн сивлетпĕр. Чăваш халăхĕ ытти халăхсемпе хутшăнмасăр пурăнаймасть. Анчах ҫав хутшăнусем пĕр-пĕрне хисеплени ҫинче аталанмалла. Килĕштерсе пурăннине нимĕн те ҫитмест.

Ҫакна манма юрамасть: Чăваш Республики – 2 миллионлă чăваш халăхĕн пĕртен пĕр наци патшалăх тытăмĕ. Тăван ҫĕр-шывăмăрăн, Аслă Анне вырăнĕнче пулса, кашни чăваш ҫыннинех хӳтлĕх пама, унăн чунне ăшăтма вăй ҫитермелле.

Шел пулин те, декларацире йышăнни пурнăҫланса пымасть. Законпа хӳтĕленĕ чăваш чĕлхи халĕ те тĕпелти чыслă вырăна йышăнаймарĕ. 67 процент чăваш пурăнакан республика туса илекен ырлăх-пурлăх ҫинче ларакан хăш-пĕр пуҫлăхсем ăна ҫав-ҫавах алăк енне тĕллесе кăтартма именмеҫҫĕ. Патшалăх органĕсенче те чĕлхемĕр ют. Тĕп хулана, Шупашкара, чăваш хули теме хĕн. Кунта пĕр чăваш шкулĕ те, ача сачĕ

те çук. Республика статусĕ еплерех пулни пысăк уявсенче те сисĕнмест. Чăваш ачисене Шупашкарти вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕме çав-çавах йывăр. Эпир аслă пĕлӳ илес енĕпе вырăссенчен, кӳршĕри ытти халăхсенчен икĕ хута яхăнах кайра тăни – намăс япала. Тăван халăхшăн тăрăшса пултарулăх, культура ĕçĕнче ырă ят илнĕ çынсем вун-вун çул хушши пурăнмалли кĕтессĕр, хваттерсĕр нушаланни тĕлĕнтерет.

Хуçалăх ĕçĕнче реформăсемирттернĕ май пурлăх кам аллине куçни уçăмлă паллă мар. Промышленность предприятийĕсен ертӳçисен хушшинче чăваш çыннисем çав-çавах сахал. Чăваш хресченĕн нушитертне ăнланас тени çитмест. Чăваш хĕрарăмĕн хурлăхлă шăпи çинчен аслă поэтăмăр Çеçпĕл Мишши çур ĕмĕр ытла каялла каласа хăварни паянхи кун та пĕлтерĕшне çухатман.

Çапла вара, чăваш çынни ытти халăхсемпе пĕр тан правалла пулни çинчен калаçма май та çук. Çав пĕртанлăх прависене çĕнсе илме чи малтанах Чăваш Республикине ертсе пыракан çынсен тăрăшмалла. Çӳлерех çĕкленĕ ыйтусенчен чылайăшне республика шайĕнче татса пама май пур.

Маларах асăннă шухăшсене тĕпе хурса  эпир çапла ыйтатпăр:

1. Чăваш Республикин Патшалăх суверенлăхĕ çинчен калакан декларацие пурнăçа кĕртес тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

2. Çак декларацие йышăннă куна Чăваш Республикин уяв кунĕ тата канмалли кун тесе пĕлтермелле.

3. Кашни çулах юпа уйăхĕн 24-мĕшĕсенче çак уяв ячĕпе савăнăçлă анлă лару ирттермелле.

4. Чăваш Республикин Конституцине хатĕрленĕ чухне тĕнче йĕркипе килĕшӳллĕн чăваш халăхĕн хăй тĕллĕнлĕх правине уçăмлăн палăртмалла.

5. Наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен ятарлă комитет туса хурас ыйтăва тепĕр хут пăхса тухмалла.

А. ХУСАНКАЙ,  Чăваш наци конгресĕн президенчĕ
В. ТИМОФЕЕВ, Тĕрĕк халăхĕсен ассамблейин пуçлăхĕ
М. ЮХМА, Пĕтĕм чăвашсен обществăпа культура центрĕн правленийĕн председателĕ
Н. ЛУКИАНОВ,  Чăваш аталанăвĕн партийĕн председателĕ.
Р. САРПИ,  Пĕтĕм Раççейри чăваш хĕрарăмĕсен канашĕн председателĕ
С. СУВАР, Республикăри чăваш хĕрарăмĕсен «Салампи» юхăмĕн председателĕн çумĕ
О. ЦЫПЛЕНКОВ, Чăваш çамрăкĕсен «Сăвар» пĕрлĕхĕн ертӳçи
Г. ОСТРЯКОВ, «Чăваш ачи» ассоциаци председателĕ
П. ПУПИН, Чăваш художникĕсен союзĕн пуçлăхĕ
1994 çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕ. *«Хыпар», 13.10.1994, 206№.*

## ХИСЕПЛĔ ТĂВАНĂМĂРСЕМ!

Юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнче, 1990 çулта, Чăваш АССР Аслă Совечĕ Патшалăх суверенитечĕ çинчен деклараци йышăнчĕ. Ку вăл чăвашăн çĕнĕ историне кĕрсе юлнă ĕç. Кăçал эпир унăн 4 çулне паллă тăватпăр. Чăваш патшалăхне аталантарас, малалла ярас ĕçре ку çапах та пысăк утăм пулнă. Çак ĕçе хутшăннă çынсенчен (ун чухне Чăваш Республикин халăх депутачĕсенчен) пĕри пулнă май эпĕ çакна палăртасшăн.

Тухăç Европăн вăтам ĕмĕр историйĕнче эпир, чăвашсем, патшалăхсăр халăх пулман. IX ĕмĕртен тытăнса XIII ĕмĕр пуçламăшĕччен пирĕн тăван халăхăмăр никама пăхăнман Атăлçи Пăлхар патшалăхĕнче пурăннă, кайран, çич çĕр çул наци тата социаллă пусмăр тӳссе, хăйĕн сăн-сăпатне, чĕлхине, тĕнче курăмне упраса хăварма пултарнă. Хаклă та хисеплĕ асаттемĕрсене манар мар!

1920 çулта, çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче, халăхăмăр хăйĕн патшалăхĕн никĕсне çĕнĕрен хывать. 15–17 çул Чăваш çĕр-шывĕнче патшалăх тăвас ĕç, чĕлхемĕрпе культурăна аталантарас ĕç вăйлă пырать. Çав ĕçе пирĕн аттесем пуçласа янă, пире пиллесе хăварнă.

Аттесен ячĕпе эпир те, чăн-чăн демократи вăй илме пуçланă саманана туйса, çак çул çине тăтăмăр.

«Суверенитет» ăнлав тĕнче шайĕнче илес пулсан та питĕ анлă та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ăна пурнăçа кĕртес тесен питĕ нумай вăй хумалла, тар юхтармалла. Чăвашăн ĕмĕртен пыракан йăлипе ниме туса, пирĕн экономика енĕпе, çынсене тивĕçлĕ социаллă хӳтлĕх парас тĕлĕшпе, экологи хăрушсăрлăхне сыхлас енĕпе питĕ нумай тăрăшмалла.

Чăваш патшалăх тытăмĕсен, тĕрлĕ общество пĕрлешĕвĕсен, наци юхăмĕн (çав шутра Чăваш наци конгресĕн те) пархатарлă çак ĕçре пĕрле пулмалла!

Ырă çыннăмăрсем! Сире пурне те юпа уйăхĕн 24-мĕшĕ – Чăваш Республикин суверенитет кунĕ çитнĕ ятпа – пĕтĕм кăмăлтан саламлатăп!

Ант сăмахĕ вырăнне юратнă сăвăçăн, Франци хирĕç тăру геройĕн Рене Шарăн сăввине калана пулăттăм:

*Кĕрекемĕре яланах йыхăратпăр,*
*Пухăнмассерен, эпĕр ирĕклĕхе.*
*Унăн вырăнĕ – пушă,*
*Анчах унăн чашăкĕ –*
*Пирĕн умра.*

Атнер ХУСАНКАЙ,  Чăваш наци конгресĕн президенчĕ.
*«Хыпар», 22.10.1994, 212№.*

## «ХĔРӲ КАЛАÇУРАН ЧНК ĔÇНЕ УРĂХ ШАЯ ÇĔКЛЕМЕЛĔХ ÇĔНĔ ШУХĂШ, ÇĔНĔ ВĂЙ-ХĂВАТ ÇУРАЛТĂР»

*Юпа уйăхĕн 27–28-мĕшĕсенче Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн анлă ларăвĕ пухăнать. Мĕнле ыйтусем сӳтсе явма палăртнă унта тата мĕншĕн? Çак ыйтăва ЧНК президенчĕ А.П. Хусанкай хуравлать.*

– Чăваш наци юхăмĕн аталанăвĕнче, ман шутпа, пĕр тапхăр пулса иртрĕ. Юлашки çулсем хушшинче чăваш аталанăвĕн ăнăçлă утăмĕсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те сахал мар пулнă-тăр. Патшалăх тытăмĕ, тĕпрен илсессĕн, улшăнчĕ. Совет империйĕ вырăнне эпир Раççей патшалăхĕнче (е никама пăхăнман патшалăх пĕрлĕхĕнче?) пурăнма тытăнтăмăр. Раççей патшалăхĕ мĕн тени пулать, эпĕ кунта хам айван пуçăмпала ăнлантарса пама пултараймастăп, анчах та демократипе федерализм принципĕсем, халăхсен хăй тĕллĕнлĕх правине, ирĕклĕхе хисепе хуни çак çĕр-шывра вăй илеймении куç кĕретех. Паянхи лару-тăрăва пĕтĕмлетсе каласан, пирĕн наци юхăмĕн улшăннă общество тата патшалăх тытăмĕнче хăйĕн вырăнне тупмаллах.

Тĕп ыйтусенчен çаксене асăннă пулăттăм. Республикăри тата тулашри чăвашсен, наци культурин аталану çул-йĕрĕ. Чăваш наци шкулĕ пирĕн хăçан та пулин ĕçлеме пуçлĕ-и? Наци политикин тĕллевĕсем. Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен пĕрлĕхĕ. Тĕрĕк халăхĕсен Ассамблейи пирки.

**– Тĕрĕссипе, ку ыйтусемпе калаçман та мар-ха ĕнтĕ – усси пĕрех сахалтарах. Хальхинче те пуш калаçу çеç пулса юласран мĕн тумалла?**

– Эпир ялан «усă» кĕтсе ларатпăр. ЧНК палăртакан тĕллевсем икĕ-виçĕ çул хушшинче татса памалли ыйтусем мар. Чи малтан вĕсем чăваш патшалăхлăхĕн çирĕп никĕсĕпе, унăн пуласлăхĕпе çыхăннă. Чăваш патшалăхне ертсе пыракансем тата «хура халăх» пĕр тĕллевлĕ, пĕр кăмăллă пулсан нумай-нумай усăллă ĕç, чăнах та, пурнăçлама пулать. Тӳрĕ-шаран психологийĕ хăвăрт улшăнмасть, паянхи тӳре-шара та хăйсене  çуратнă тăван халăхшăн питех ĕçлесшĕн мар пек. Влаç тытăмĕ тата халăх пĕр-пĕринчен ютшăнаççĕ пулсан, паллах, усси пулмĕ.

ЧНК вăл патшалăх тытăмĕ мар, общество организацийĕ кăна. Анлăрах илес пулсан  ЧНК – чăваш халăхĕн чи Аслă Пухăвĕ. Унăн тĕп тĕллевĕсем çаксем пулса тăраççĕ: Чĕрĕлӳ, Аталану тата Чăмăртану. Çавăнпа та кашни чăваш çынни хăй тăрăшса «чăваш ĕçне» усă кӳме пултарать. ЧНК Раççейри çурма суя демократин икĕ питлĕ политикине тĕпе хурса ĕçлемест, пирĕн чи малтан тĕнче правин йĕркине шута илмелле. Халĕ эпир тĕнчери тĕрлĕ пĕрлĕхсемпе çыхăну тытатпăр (Тĕрĕк патшалăхĕсен тата пĕрлĕхĕсен курултайĕ, Тĕнчене тухайман халăхсемпе нацисен организацийĕ). Хамăр тĕнче умĕнче «уçăлатпăр», ытти халăхсен ыйтăвĕсене ăнкарма пуçлатпăр.

ЧНК Мăн Канашĕн анлă ларăвĕнче те калаçу ĕçлĕ, витĕмлĕ тата çирĕп пуласса шанатăп. «Чăваш ĕçĕнчен» пăрăнма шутламастăп, эпир – сутăнчăксем мар.

**– «Тивĕçлипе ĕçлеменнисен» шутне Чăваш наци конгресне те кĕртесшĕн хăшĕсем. Чăннипе те, мĕншĕн тата вирлĕрех ĕçлеймест вăл?**

– Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем сахал мар, кăна тÿрремĕнех йышăнмалла. ЧНК ĕçне парăннă, пĕтĕм вăй-халне хума хатĕр çынсен шучĕ пысăк. Ку енĕпе пăхсассăн Мăн Канашăн йышне çĕнетмелле, унта хастартарах чăвашсене кĕртмелле. ЧНКн ялан ĕçлекен çынсем те (секретариат) пулмалла, халĕ вĕсем çукпа пĕрех. Укçа-тенкĕ çукки, хăш-пĕр йĕркелÿ ĕçĕсем татăлманни те чăрмантарать. Эпир критикăна йышăнма хатĕр, анчах хĕрÿ калаçуран ЧНК ĕçне урăх шая çĕклемелĕх çĕнĕ шухăш, çĕнĕ вăй-хăват çуралинччĕ. Мăн Канаш членĕсенчен сĕнÿсем, çивĕч сăмах кĕтетпĕр. Пĕр-пĕринчен пытармалли япаласем пирĕн çук. Кусран пăхса каланă сăмах хамăр ĕçе тивĕçлĕн хаклама май парĕ.

Ĕçĕ пур, вăл тÿрех куçа курăнмасть пулин те. Сăмахран, Конгресс енĕпе эпир ЧР Конституцийĕн (Тĕп саккунĕн) проектне тăратрăмăр. Хамăр патшалăха тăвас ĕçре Тĕп саккун йышăнни чи пĕлтерĕшлĕ, унăн татăклă сăмах пулмалла. Çак проекта эпир ЧНК малтан йышăннă документсемпе килĕшÿллĕн йĕркелерĕмĕр, ЧР Конституци ушкăнне (комиссине) тăратрăмăр. Сÿтсе явас, Тĕп саккуна йышăнас ĕçе ЧНК çыннисем хутшăнмасăр тăма пултараймаççĕ.

**– Халăхĕ – хастар мар, халăх ĕçне хăйсем çине илсе ĕçлес текенсен – укçи-тенки çук... Тен, çав ĕç валли каякан вăхăта хастар çынсен хăйсемшĕн тăрăшма çеç ямалла: хăть çемйи валли укçа-тенкĕ пулĕ, мул-пурлăх... Кайран куç курать унта. Тĕрĕссипе, чăваш наци юхăмĕнчи хăш-пĕр хастарсем çав çула суйласа илнĕ те ĕнтĕ.**

– Эпир хамăр ĕçе никама та ирĕксĕрлесе хутшăнтармастпăр. Кашни çын мĕн тумаллине хăй суйласа илет. Е «ирĕклĕх сулĕ» (Альбер Камю калашле, ирĕк тумалли ĕçе – La service unutile – чăвашла ăна пархатарсăр «хура ĕç» тесе палăртма пулать), е тĕттĕмлĕх, чура шайĕнчи пурăнăç? ЧНК Мăн Канашĕнче шутланса çеç тăракан хăш-пĕр çынсенчен тасалас пулать.

**– Чăваш халăхĕн наци юхăмĕ çывăх вăхăтра тата 2000 çулччен епле аталанса пырĕ тесе шутлатăр?**

– Эпĕ пророк мар, ун пек инçет малашлăха курма куçăм питех те çивĕч мар. Пĕтĕмпех хамăртан килет, шухăш-кăмăлăмăр çирĕп, хастар пулсан паянхи çăмăл мар лару-тăрура та чăваш наци юхăмĕ вăй илетех. «Çĕнĕ» чăвашсен ÿсĕмĕ шăтса тухмалла пек. Çавă пултăр тесен мĕн тумалла-ха пирĕн? Пĕрремĕшĕ паллă, анчах та эпĕ ăна кунта тепĕр хут çирĕплетсе хăварасшăн (вырăсла, ирĕк парсассăн): «...выдавливать из себя по капле раба» (А.П. Чехов).

Иккĕмĕшĕ. Хальхи пурнăç йĕркине хамăр алла илес тетпĕр пулсан пире çĕнĕ пĕлÿ кирлĕ (политикăпа экономика ĕçĕнче, пурлăхпа укçа-тенкĕ ыйтăвĕсене татса панă чух, юриспруденципе саккун хатĕрлес ĕçре, ют çĕр-шыв чĕлхисене пĕлни тата ытти нумай-нумай япала). Юрласа-ташласа кăна эпир çĕнĕ чăваш пурнăç йĕркине нихăçан та тăваяс çук.

Виççĕмĕшĕ. Ытти халăхсен умĕнче пуçа усса лармалла мар, хăюллă, ирĕклĕ чăваш пулмалла. Мĕскĕнлĕх чирĕнчен сывалас пулать. Эпир хамăран тăван çĕр-шывăмăрта пуранатпăр, хамăра кирлĕ пек, хамăра усăллă пек мĕнле пурăнмаллине, чăваш идейине хамăрăнах палăртмалла.

Çĕнĕлле шухăшлакан, çĕнĕлле ĕçлеме пултаракан çĕр чăваш пулсан тем те тума пулать.

«Шанчăк пуррисем – телейлĕ», – каланăччĕ маттур шаманăмăр Çеçпĕлĕмĕр.

Илле ИВАНОВ калаçнă.

# ПУЛАСЛĂХ – ПĔРЛĔХРЕ

## Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн анлă ларăвне янă Уçă çыру

Тăван халăхăмарăн сумлă ертÿçи!
Хисеплĕ делегатсемпе хăнасем!
Ырă çыннăмăрсем!

Ирĕк парсамăрччĕ мана сире пурне те çак кунсенче шĕкĕр хуламăрта Шупашкарта уçăлакан Мăн Канашăн анлă ларăвĕ ĕçлеме тытăннипе хĕрÿллĕн саламлама. Ĕçĕрте ăнăçу, татулăх, мĕн пур чăваш халăхĕшĕн, унăн ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ йышăнусем пуласса шанас килет. Çак салам сăмахĕсемпе пĕрлех, Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ пулнă май, кулленхи пурнăçра пире пурсăмăра та шухăшлаттаракан, хумхантаракан ыйтусем тавра каламалли пĕр-икĕ самахăм пур. Чăваш наци конгресĕ (ЧНК) йĕркеленнĕренпе икĕ çул ытларах иртрĕ. Анчах вăл, тÿрех каламалла, пĕр кунта, пĕр самантра хăш-пĕрисен «вĕри» пуçĕсенче васкавлă çуралнă темĕнле мифла япала мар. ЧНК вăл, чи малтанах, чăваш халăхĕн мал ĕмĕтлĕ, пултаруллă çыннисен шухаш-кăмăлне, халăхăмăрăн пурнăç чăнлăхне тĕпрен-кăкран пĕлсе паянхи куншăн, тивлетлĕ пуласлăхшăн саккун тата право йĕркипе тивĕçлĕ ĕçлесе ертсе пыма пултаракан пĕтĕм чăваш халăхĕн пĕртен пĕр пĕрлешĕвĕ (организацийĕ). ЧНК вăл – пĕр-пĕр уйрăм çыннăн е ушкăнăн ĕçĕ-хĕлĕ çеç мар, вăл чăваш чунлă çынсемшĕн пуриншĕн те усă. Унăн тĕллевĕсем пархатарлă – чăваш çынни, чăваш чĕлхи, чăваш культури, чăваш мул-пурлăхĕ тăванла ытти халăхсемпе, чĕлхесемпе, культурăсемпе, мул-пурлăхпа пĕр тан пуласси, пĕр тан аталанасси, аслă тĕнчемĕрĕн ирĕклĕ çыннине çитĕнтересси. Шел пулин те, хальлĕхе умăмăрта тăракан тĕллевсене тарăннăн ăнланассинче, вĕсене мĕнлерех мелпе татса парассинче, пурнăçа кĕртессинче уйрăм çынсен те, патшалăх тытăмĕнче ĕçлекенсен те пĕрлĕх курăнсах каймасть. Аслă Атăлçи Пăлхар патшалăхне çухатнăранпа (9–13-мĕш ĕмĕрсем) чăваш-пăлхарсен ăс-тăнĕнче, камăл-сипетĕнче, философийĕнче пуç пулса тăма тытăннă икĕ енлĕх (икĕ питлĕх) пире паянхи кунччен калама çук пысăк чăрмав кÿрет.

Кунта эпĕ, тĕпрен илсен, чăвашлăхпа çыхăннă пĕр уйрăмлăх пирки çеç каласшăн, мĕншĕн тесен кулленхи пурнăçри ытти вак-тĕвексем çав принципран тухса тăраççĕ тесе шутлатăп. Пăхăсăн: «сумлă-ятлă» хăш-пĕр чăваш Чăвашра яланах чăвашлăхшăн калаçнă пек кăтартать, анчах çав çынах Мускаври хăйсене чи аслă вырăс евĕр тыткалать, теприсем вара Турцире те чи аслă тă ăслă турккă пулма «тивĕçнĕ». Тĕрĕссипе вара çакнашкал çынсен ĕçĕ-хĕлĕнче ни чăвашлăх, ни вырăслăх, ни турккăлăх çук. Пĕтĕмĕшле илсен, вĕсем общество аталанăвне сиен кÿнисĕр пуçне урăх нимĕн енчен те палăрса тăмаççĕ.

Манăн шухăшăмпа – ЧНК ертÿçи Атнер Хусанкай чăвашлăхăн пуласлăхне тĕрĕс тупса палăртма пултарчĕ, ку тĕлĕшпе вăл ырми-канми ĕçлет. Ĕмĕрсем тăршшĕпе чăваш халăхĕ хăйне евĕрлĕ кăткăс лару-тăрура аталанса пынă, кăкĕ-тымарĕпе тĕрĕк юнлă халăх ытти тĕрĕксенчен уйрăлмасăр, финн-угор тата славян халăхĕсемпе тĕрлĕ хутшăнăва кĕнĕ, апла пулин те хăйĕн чан-чăн сăн-сăпатне çухатман, хăйĕн ятне яман. Çакă вара пирĕншĕн тата ÿсекен ăрусемшĕн чылай пысăк шанчăк çуратать. Пирĕн пуласлăхăмăр пĕрлĕхре – ĕçре, сăмахра тата шухăшра (И. Гаспринский)), тăван халăхăмăра хисепленинче, Аслă Турă пÿрнĕ чĕлхемĕрпе культурăна упраса аталантарнинче, мул çумне мул хушса мул-пурлăха çирĕплетнинче, цивилизациллĕ Чăваш патшалăхĕ йĕркелеме пултарнинче, кашни уйрăм çыннăн ирĕклĕхĕнче.

Мăн Канашăн анлă ларăвĕнче сÿтсе явмалли, татса памалли ыйтусем татах та пулĕç, çавăнпа эпĕ пурне те тухăçлă ĕçлеме, тăван халăхăмăрăн çутă пуласлăхĕшĕн, ирĕк-телейлĕхĕшĕн çирĕп тăма чĕнсе пуçа сирĕн умăрта таятăп.

Василий АНДРЕЕВ,
ЧНК вице-президенчĕ, Стамбул университечĕн доценчĕ.
Стамбул, Турци Республики.

# ЧНК. ПУШАР СЎНТЕРМЕ ЧĔНЕКЕН ЧАН САССИ-ШИ?

*Чăваш халăхĕн I Аслă пухăвĕ – Наци Конгресĕ – иртнĕренпе икĕ çул çитрĕ. Халăха пушар сÿнтерме тухма чĕнекен чан сасси пекех туйăнать вăл хăш-пĕриншĕн. Камăн аллине мĕн лекет ун пек чухне: пĕри витрепе, тепри кĕреçепе, виççĕмĕшĕ вара пуш алăпах çаврăнкалать çунакан çурт йĕри-тавра.*

Конгресс та хăйĕн кĕрлевĕпе «кисретсе» илчĕ халахăмăра. Хамăр «иккĕмĕш сортлă» пулнишĕн вăтанманни, аннен чĕлхине кăшт çеç сутса яман пулсан та хула урамĕсене кăларни тата ытти пирки те кăкăра çапса янрашса илкелерĕмĕр. Çапла çав, вут-хĕм ярса илнĕ çурт наччасрах кĕл купи пулса юлать. Пирĕн наци чĕрĕлĕвне унпа танлаштарас килмест-ха, шел пулин те, пĕрпеклĕхсем пурах. Тем

тесен те – Конгресра тума палăртнă чылай ĕç калаçнипех вĕçленчĕ. Историре çапла пулни пирки те илтнĕ: пĕр-пĕр халăх çĕр питĕнчен çухалас умĕн пит васкавлăн «чĕрĕлме» пуçлать, анчах вăхăт вăрах та иртмест – унăн кун-çулĕ пач татăлать. Çапах та чăвашăн историйĕ кунпах вĕçленмĕ. Ахальтен мар-тăр чăваш пĕтсен тĕнче пĕтет тенĕ. Тĕнче паян-ыранах пĕтесси пирки вара çирĕплетекенсем çукрах-ха. Апла чăваш та малалла пурăнĕ-и-ха?

Юлашки çулсенче чăвашăн кун-çулĕнче пулса иртнĕ ырă улшăнусем пирки. Чăн та, хулара та чăваш чĕлхине вĕрентме пуçларĕç, ятарлă лицейсемпе гимназисем уçрĕç. Тăван чĕлхемĕр пирки ятарлă саккун та йышăнтăмăр. Ку çеç те мар. Чăваш Республикин патшалăх суверенлăхĕ çичен калакан декларации те йышăннă. Çав тапхăрти çĕнĕлĕхсем – Чăваш Енĕн пĕрремĕш Президентне суйлани, профессиллĕ майпа ĕçлекен парламент – Патшалăх Канашĕ – йĕркеленни...

Çак е ытти ыйтусене хаçатра хускатман мар. Манăн вара ку хутĕнче сăмахăм тулай чăвашсем пирки пулĕ.

Çак кунсенче редакцие Тутарстанри Анат Камăра пурăнакан Н.А. Зотеева кĕрсе тухрĕ. Мĕн аса илчĕ-ха Наталья Александровна:

– 1989 çулта пенсие кайрăм. Унччен шкулта 36 çул ачасене верентнĕскерĕн ĕççĕр ларас килмерĕ. Малтан хулара чăваш театрĕ йĕркелесси пирки шутланăччĕ. Хулан культура пайне кайрăм. Пӳлĕм тупса пачĕç. Район хаçатĕнче пĕлтерӳ пичетлерĕмĕр. Часах 40-ĕн пухăнтăмăр. «Айтар» спектакль лартасшăнччĕ. Анчах Б. Никитин музыкант пире малтан тĕрĕс юрлама вĕрентес терĕ. Çапла çуралчĕ «Шăнкăрав» ансамбль. Апла пулин те театр пирки те манмарăмăр. Хулари Техника çуртĕнче пĕр пайлă пьеса кăтартрăмăр. Кăçал вара – «Кай, кай Ивана» спектакль. Чăваш вырсарни шкулне йĕркелесе янăранпа 3 çул çитрĕ. Пирĕн «Тамаша» театр шăпах çак шкул çумĕнче ĕçлет. Чăваш ачисем «Илем» ансамбле çӳреççĕ. Самар, Чĕмпĕр облаçĕсенче, Удмурт Республикинче те хамăрăн пултарулăхпа паллаштарнă. Коллективпа курнăçасси, тăван чĕлхепе ăшшăн калаçасси – пирĕншĕн пысăк савăнăç. Хамăра çĕнĕрен çуралнă пек туятпăр.

Тутарстанри ентешĕмĕрсене илес тĕк – поэт сăмахĕсемпе çакна палăртмалла: тăвалла пулсан та малаллах ăнтăлаççĕ вĕсем. Йывăрпа, çапах виççĕмĕш çул кун çути курать чăвашсен «Сувар» хаçачĕ, нумаях пулмасть Хусанта чăвашсен вырсарни шкулĕ ĕçлеме пуçларĕ. Вахăтран-вăхăт Тутарстанри радиопа чăваш сасси, юрри-кĕвви илтĕнсе каять. Унти аслă вĕренӳ заведенийĕнче чăваш уйрăмĕ уçнă. Çак ĕççене пуçарса яма хавхалантараканĕ – унти йăхташсен культура обществин центрĕ (ертӳçи Н. Степанцев). Чăваш Республикипе Тутарстан хушшинче культура енĕпе килĕштерсе ĕçлес тĕлĕшпе программа йышăннă. Çак çитĕнӳсенче, паллах, Чăваш наци конгресĕн витĕмĕ те çук мар.

Мускавра, Санкт-Петербургра, Самар, Пенза, Чĕмпĕр тăрăхĕсенче те, Пушкăртстанра та культура-общество центрĕсем пур. Тĕрĕсрех, Балтика тăрăхĕнчен пуçласа Инçет Хĕвел тухăç таранах. Эстонири, Латвири чăвашсем те хăйсем ăçти йăхран пулнине аса илме пуçларĕç. Камчатка облаçĕнчи чăвашсен культура обществин центрĕн ертӳçинчен М. Саватнеевран çыру илнĕччĕ. «Камчаткăра 3 пин чăваш пурăнать, вĕсенчен 2 пинĕшĕ – Петропавловск-Камчатскра. Центра икĕ çул каялла йĕркеленĕ. Кунта пурăнакан ентешсем хушшинче чăвашлăха упраса хăварас тĕлĕшпе хăш-пĕр ĕççем тума палăртнă. Çитес вăхăтрах ансамбль йĕркелесшĕн, çавăн пекех пысăках мар библиотека та уçма палăртнă. Тепĕр ĕмĕт – вырсарни шкулĕ. Облаçри Вĕренӳ управленийĕ пулăшма шантарчĕ. Чăваш Енрен вĕренӳ хатĕрĕсем çырăнса илесшĕн. Анчах пире, республика тулашĕнче пурăнакансене, унашкал учебниксем тивĕçтерсех каймаççĕ. Пирĕн тĕллев – тăван чĕлхепе калаçма, вулама вĕрентесси. Хальхи кĕнекесен программи ытла та кăткăс».

Камчаткăри ентешсем чăвашлăха чĕртес тĕлĕшпе пурнăçламалли ĕççене палăртни аван, анчах вĕсене вăя кĕртесси чăрмавлă пуласси куç ӳмĕнчех. Чи малтанах библиотека йĕркелесе ярас тĕлĕшпе. Чăваш çыравçисен кĕнекисене юнашарах вырнаçнă облаçсемпе республикăсенчи тăванăмăрсем патне çитерме те хал çукрах та – Камчаткăна вара ĕмĕтпе кăна пулĕ.

Тюмень чăвашĕсемшĕн чăннипех савăнас килет. Хастар та пултарулă, тăван халăхĕшĕн çунакан маттур ентешсем пур унта: А. Архипов, М. Кузнецов, В. Ильдуганов тата ыттисем. Облаçра чăвашсен «Тăван» ассоциацийĕ, культура центрĕ пур. Патшалăх бюджечĕ çинче никĕсленнĕ культура центрĕн вăй-хăвачĕ, общество йĕркипе ĕçлекеннисемпе танлаштарсан, самай тухăçлăрах. Тĕрлĕ мероприятисем ирттерме укçа-тенкĕ уйăрса пани паянхи кун уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Тюменьре иккĕмĕш çул чăвашсен вырсарни шкулĕ ĕçлет. Анат Тавда районĕнчи Канаш ялĕнче тата ытти чăваш ялĕсенче тăван чĕлхе урокĕсем иртерме пуçланă. Ку енĕпе Тюмень облаçне кăçал Шупашкартан пилĕк çамрăк специалист пырса çитнĕ.

Самарти коммерци йĕркипе ĕçлекен нумай нациллĕ радиовещанире Н. Панферова журналист иккĕмĕш çул чăвашла передачăсем хатĕрлет. Çак тăрăхра çеç мар, юнашарти Тутарстанпа Чĕмпĕр облаçĕнчи ентешсем те итлесе савăнаççĕ ăна. Шел пулин те, Самарта чăваш хаçачĕ кăларма пуçласси çав-çавах тăсăлса пырать. Сăлтавĕ кадрсемпе ĕç пӳлĕмĕ, хаçата тытса тăма кирлĕ чухлĕ укçа-тенкĕ çуккинче çеç мар пулĕ. Тĕп айăпĕ хамăртах пек, пирĕн çирĕпсĕрлĕхре, лăпкăлăхра, ытла та вăрах кĕтме хăнăхнинче. Ав, Самар тутарĕсем маттурах çав. Облаçра йышĕпе чăвашран сахал пулсан та кĕрлеттерсе хаçат кăлараççĕ.

Тольяттире ĕçлесе пурăнакан Н. Измайловăпа иртнĕ хĕлле паллашма тӳр килнĕччĕ. Унти чăвашсен «Шанчăк» культура общества çуралнă кун. Йĕркелӳ пухăвĕ хыççăн концерт пулчĕ. Вырăнти фольклор ушкăнĕсемпе пĕрле хĕрсем чăваш юррисем шăрантарчĕç. Вĕсенчен пĕри шăпах – Шăмăршă тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ Нина Измайлова. Ун чухне ансамбль йĕркелесси пирки ĕмĕтленсе калаçнăччĕ вăл. Халĕ вăл ертсе пыракан «Телей» ушкăнри 15 çын Тольяттири 12 пин чăваша чăмăртанма пулăшать: вĕсене хулара пурăнакан 500 пин çын хушшинче сапаланса кайма памĕç. «Пирĕншĕн пĕрле пуçтарăнса чăваш юрри юрлама май пурри – чăн-чăн телей»,– тет Нина Никандровна.

Пушкăртстанри «Урал сасси» хаçат тулайри ентешĕмĕрсем хушшинче чи малтан кун çути курнă чăвашла хаçат. Каярах Чĕмпĕрти «Канаш» хаçат, унти телевидениери «Еткер» кăларăм. Çаксем пĕтĕмпех кăвар чĕреллĕ ентешсем-«националистсем» тăрăшнипе пулса пыраççĕ. Тĕрĕссипе, тăрăшнипе çеç мар, кĕрешнипе те. Çапла тепĕр чух хулăн тирлĕ чиновнике ăнлантару сăмахĕпех тăна кĕртеймен, кĕрешӳвĕн хайне майлă мелĕсем те кирлĕ. Çук, çук, хĕç-пăшал çĕклеме чĕнмеççĕ вĕсем.

Чăваш наци конгресне асар-писер пушарпа танлаштарма пăхаççĕ терĕм ĕнтĕ. Çулăмĕ вăхăтлăха çунтарса илчĕ пуль-ха, анчах унăн ăшши пĕтрĕ теме те пултараймастăп. Мĕншĕн тесен тĕп чăвашсенчен пин-пин çухрăмри çурма ентеш те çĕнĕрен амăшĕн чĕлхипе калаçма, хăйĕн ĕмĕрĕнче чăвашла «атте», «анне» тесе курман яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç чăваш юррине итлеме, тин çеç парта хушшине ларнă пепке «Тăван сăмах» вĕренме пуçларĕ пулсан, эпир сывлăш çавăрса ямаллах. ЧНК Мăн Канашĕн ларăвĕнчен вара «çавăрса илнĕ сывлăша» малашне те пĕр тикĕс тытса тăма, тытса тăма çеç мар, çĕнĕ витĕм кӳрессе кĕтетпĕр. Шанатпăр та.

Надежда СМИРНОВА.

*«Хыпар», 27.10.1994, 215№.*

**Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашăн ларăвĕ (1994, юпа, 27–28)**

## ХАЛĂХ ВĂЙĔ – ПĔРЛĔХРЕ

*Ĕнер «Атăлпи» турист çурчĕн акт залĕнче Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн анлă ларăвĕ уçăлчĕ. 115 çын килнĕ – Мăн Канаш членĕсем кăна мар, чăвашлăха çĕклес ыйтусене чунĕпе, ăс-хакăлпа йышăннă, çак ĕçе хăйсен тӳпине хывма хатĕр ытти чăвашсем те. Чăваш Енре пурăнаканнисем те, тулайрисем те.*

ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, тĕрлĕ партисемпе юхăмсен представителĕсем те хутшăнчĕç. ЧР Президенчĕ **Н.В. Федоров** Мускавра пулнине, Чăваш Енĕн социаллă пурнăçĕпе экономикине аталантарас ыйтусемпе Раççей Президенчĕпе Б.Н. Ельцинпа курса калаçнине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Ĕнер вăл Мускавран таврăнсан тӳрех ЧНК Мăн

Канашĕн анлă ларăвне васканă. ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ **В.С. Шурчанов** та килнĕ. «Влаçри пуçлăхсем Наци конгреснe хисеплеççĕ, чăваш халăхĕн аталанăвĕшĕн пĕрлешсе ĕçлеме шутлаççĕ пуль, тахçанах çапла пулмалла, апла шанăç пур-ха», — çакăн пек калаçса-хумханса илчĕç залра ларакансем вĕсем çитсе кĕрсен.

Лару-пухусене калаçма, ĕç тума ирттереççĕ. ЧНК Мăн Канашĕ те çак тĕллевпех пухăннă. Анчах икĕ çул каялла йĕркеленĕ Наци конгресĕшĕн ку ахаль лару кăна мар, тĕрлĕ шухăшлă, анчах пĕр ĕмĕтлĕ чăвашсене курса калаçма май паракан уяв та. Икĕ çул хушшинче, иртнĕ ларурампа та кашниннех мĕнле те пулин ўсĕм пур. Пурнăç вырăнта тăмасть, ĕçлеççĕ çынсем: чăваш шкулĕсем йĕркеленĕ, чăвашла хаçатсем кăларма пуçланă, халăх йăли-йĕркине, культурине чĕртсе тăратассишĕн çĕнĕ утăмсем тунă, чăваш культура обществисене чăмăртаннă. Çавăнпах пулĕ — лару умĕн «Уяв» ансамбль халăх юррине шăрантарса яни питĕ килĕшўллĕ пек туйăнчĕ.

Чăвашсен ырă йăлипе Мăн Канаш ларăвне пухăннисен умĕнче чăваш мăчавăрĕ **Якуркка Микихверĕ** пил сăмахĕ каларĕ. Анлă ларăва ЧНК президенчĕ, Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен Ассамблейин тĕп секретарĕ **А.П. Хусанкай** уçрĕ. Форума килнĕ делегатсемпе хăнасене ЧР Президенчĕ **Н.В. Федоров** саламларĕ, сăмах каларĕ. Кăçал Мăн Канашăн йышĕнче тавăрайми çухату та пулнă, унăн членĕ, Америкăра пурăннă С.Н. Падюков чăваш пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă. Ăна пĕр минут шăп тăрса асăнчĕç.

Докладсем пуçланчĕç. ЧР культурăпа национальноçсен ĕçесен министрĕ **В.П. Иванов** «Республикăри тата тулашри чăваш наци культурин 2000 çулччenхи аталану çул-йĕрĕ» ыйтупа тухса калаçрĕ. Ыйтăвĕ питĕ анлă, çавăнпах пулĕ, доклачĕ те сехете яхăн пулчĕ. Министр аталану çинчен калаçма пуçличчен республикăра миçе культура учрежденийĕ, вĕренў заведенийĕ пурринчен пуçласа вĕсенче миçе çын ĕçлени-вĕренни, вулакансен йышĕ миçе çынна çитни çинчен питĕ тĕплĕн цифрăсемпе çирĕплетсе каласа пачĕ. Культура министерстви аталану çул-йĕрне тĕплĕн палăртнă, конкретлă планпа ĕçлесе пырать. Кăçал çулла ЧР Министрсен Кабинечĕнче 1994—2000 çулсенче культурăна аталантармалли пысăк программа йышăннă. Ăна пурнăçа кĕртме, малтан палăртнă тăрăх, 80 миллиард тенкĕ кирлĕ пулать. Кун пек программăпа Раççейĕпе те тăватă регионта кăна ĕçлеççĕ. Вăл 9 пайран тарать. Виççĕмĕш пайĕнче - тулашри чăвашсен культурине упрас, аталантарас ыйтусем. Кашни ĕçшĕн кам яваплине тата ăна хăçан пурнăçа кĕртмеллине те çирĕплетнĕ. Çак планпа мĕн тунине тата çитес çул унпа малалла ĕçлеме мĕн чухлĕ укçа кирлине палăртса министерство çулталăк вĕçĕнче отчет тăвать. Докладчик П.Е. Егоров архитекторпа И.Я. Яковлев скульптурисене тăвас, культура çурчĕсем çĕклес, чăваш композиторĕсемпе юрăçисен пластинкисене кăларас, çамрăксене вĕрентес, театрсен гастролĕсемпе, писательсене, композиторсене, драматургсене ĕçшĕн хавхалантарассипе çыхăннă çивĕч ыйтусене татса парас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинче те чарăнса тăчĕ.

Конгресс вице-президенчĕ, тавра пĕлўçсен пĕрлешĕвĕн председателĕ **В.П. Станьял** «Чăваш халăхĕн пĕрлĕх календарĕ» ыйтупа калаçма тухрĕ пулин те, тата шаларах сăмахлаймасăр чăтаймарĕ: «ЧНК Мăн Канашĕпе Кĕçĕн Канашĕ, кĕтнĕ пекех, хастар ĕçлеймерĕç, — терĕ вăл. — Анчах та ЧНКн укçа-тенкĕ çук, никам та шалу илмен, эпĕ те ку таранччен укçасăрах ĕçленĕ. Çавăнпа хăш-пĕрисем хăйсен чун хавалĕпе кăна, ним ыйтмасăр ĕçлекен çынсене хурласа калаçни киревсĕр туйăнать. Ун пек çынсене тав тумалла».

Питĕ тĕрĕс калать Виталий Петрович. Паян, укçа пуç пулса пынă вăхăтра, ырă сăмахшăн кăна ĕçлеме килĕшекенсем тупăнсах каймаççĕ çав. Тиркеме çăмăл та, ĕçне тума йывăр-çке. В.П. Станьялăн танлăх енне таврăнмалли çинчен каланă сăмахĕсем те килĕшрĕç. Вăл палăртнă тăрăх, тĕнчери ытти халăхсемпе тан пуласси — чăваш халăхĕн тĕп идейи. Чăваш наци конгресĕн «Чăваш халăх ăсчахĕ» тата «Чăваш халăх ăсти» хисеплĕ ячĕсене туса хумалли, Чăваш ăс-хакăлĕн академине уçмалли, чăвашлăх сăнне упракан йăла-йĕркене пирĕн кулленхи пурнăçа кĕртмелли, уйăх-хĕвелпе çыхăннă чăваш çулталăк кун таврăмне тытса пыма пуçламалли çинчен те каларĕ.

ЧНК президенчĕ **А.П. Хусанкай** тунă доклад ячĕ — «Наци политикин малашлăхĕ тата Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен Ассамблейи пирки». Наци политики пирки калаçма паян çăмăл маррине палăртрĕ вăл.

Наци политики вăл — халăхăн чун-чĕререн тухакан тĕреклĕ кăмăлĕ. Тĕнче прави те çапла йышăнать. Халăх хăйĕн культурине, йăли-йĕркине мĕнле курасшăн — çавăн пек куртăр, йышăнтăр хăй ирĕкĕпе, Акă, пĕрремĕшĕнчен, Раççей Федерацийĕн субъекчĕсем пур, вĕсен кашнин хăйсен политикине тытса тăмалла. Анчах уйрăммăн пулнипе, хупăнса ларнипе пысăк ĕç тăваймастпăр. Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен, сăмахран, регион шайĕнчи наци политики пулмалла. Ку — иккĕмĕшĕнчен. Виççĕмĕш шай — Раççей Федерацийĕн шайĕнчи наци политики пулмалла. Вăл çук, наци политикипе ĕçлекен министерство пур, штачĕ пысăк пулсан та — Мускава шанса ларни усă памĕ. Унта пирĕн ыйтусне, нушасене пĕлмеççĕ. Тепĕр шая тухмалла, тĕрĕксем-и эпир е финн-угорсем-и — тăвансемпе çыхăнусем йĕркелемелле. Чăваш наци конгресĕ валли пуçа ватмалли самант çитрĕ. Пурнăçра улшăнусем нумай пулчĕç: экономикăра та, социаллă ыйтусемпе те, Чăваш наци конгресĕн хăйĕн вырăнне тупмалла. Хăшĕсем каланă пек оппозицире пулмалла пулĕ-ха. Анчах самана йывăр, тăхтамалла, ĕçе йĕркелесе яма вăхăт кирлĕ. Шавлама çăмăл. Чи кирли — Чăвашра эпир пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр чĕлхе тупма пултарни. Чăваш наци идейи пур, анчах ăна халăх ăнланмалла йĕркепе уçса параймарăмăр пулас. Шухăшсем пулнă, анчах вĕсем халăх патне çитеймерĕç, хускатаймарĕç пулмалла.

ЧР Патшалăх Канашĕ, унăн депутачĕсем ячĕпе форума килнисене саламланă хыççăн унăн председателĕ **В.С. Шурчанов** та чăваш халăхне хумхантаракан ыйтусем çине куçрĕ. Чи малтанах вăл пурне те пулас суйлава активлă хутшăнма чĕнсе каларĕ. Патшалăх Канашĕ тулли йышпа хăйĕн ĕçне çĕнĕлле пуçласа яма пултарĕччĕ терĕ. Унăн шухăшĕпе — паян Патшалăх Канашĕпе ЧНКн Раççей Федерацийĕнче Чăваш Республикин прависене пысăклатассишĕн пĕрле ĕçлемелле. Пĕлтĕр йышăнтарнă РФ Конституцийĕ вара республикăсен прависене ытлашшипех чакарнă, федераци прависене ўстернĕ. Çак танмарлăха пăрахăçлама пултармаллах пĕрле ĕçлесен. Республикăн çитес çулхи бюджетне палăртнă чухне Чăваш наци конгресĕн хутшăнасчĕ. Сĕнўсем тăратсан вĕсене пăхса тухатпăр. Культура валли укçа уйăрма май тупмаллах. Патшалăх Канашĕпе Чăваш наци конгресĕн И.Я. Яковлев 150 çул тултарнине (1998 ç.) уявлас ыйтупа Раççейĕн ЮНЕСКО шайне тухмалла,

Тĕрĕк халăхĕсен ассоциацийĕн председателĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ **В.А. Тимофеев**, яланхи пекех, хĕрў те ĕнентерўллĕ аргументсемпе кăмăла уçрĕ. Тĕрĕк халăхĕсен Ассамблейин ĕçĕсемпе паллаштарчĕ. Унтан Чăваш Ен суверенитечĕ пирки, чăваш гражданлăх саккунне йышăнмалли, чăваш символикипе усă курасси çинчен каларĕ.

Конгреса чăваш хĕрарăмĕсен «Салампи» юхăмĕн членĕсем те килнĕ. Юхăм председателĕн çумĕ **Л.П. Афанасьева** сăмах илчĕ. Çак кунсенче пĕрле пухăнса вĕсем кăçал чăвашсене çĕклес ĕçре палăрнă арçынсене парнесем пама йышăннă иккен. Людмила Конорева ăстаçă тăмран ятарласа пĕчĕк скульптурăсем тунă. «Салампи» юхăмăн «Хастар чăваша» парнине Н.В. Федоров Президент, «Аптраман чăваш» парнине В.С. Шурчанов, «Хăюллă чăваш» парнине А.П. Хусанкай, хавхалантармалли парнесене В.Д. Димитриев академик, Хресченсен союзĕн председателĕ А.П. Айдак, «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ А.П. Леонтьев, П.Н. Муллин бизнесмен илме тивĕç пулчĕç.

Алина ЛУКИЯНОВА.

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРЕЗИДЕНЧĔН Н.В. ФЕДОРОВĂН СĂМАХĔ

Сире пурне те Чăваш наци конгресĕн черетлĕ Мăн Канашĕн анлă ларăвĕ уçăлнă ятпа чĕререн саламлатăп. Сирĕн умра тухса калаçма

май пулнăшăн чунран савăнатăп. «Çулăр такăр пулчĕ-и?», «Лайăх вырнаçрăр-и?» – тесе ыйтас килет, малалла ăнăçлă ĕçлеме вăй-хăват сунас килет.

Икĕ çул иртрĕ Чăваш наци конгресне туса хунăранпа. Йывăр, анчах паллă çулсем пулчĕç вĕсем. Тĕпрен илсен, халăхăн наци туйăмĕ ÿссе пырать, чăваш хăй чăваш пулнинчен вăтанни пĕтсе пырать, Чăваш патшалăхĕ майĕпен те çирĕппĕн аталанса ура çине тăрать, тĕнчене тухать. Ахальтен мар ĕнтĕ «утакан малаллах каять», – теççĕ чăвашра.

Пĕр мухтанмасăр калатăп: Мускаври Чăваш патшалăхне туяççĕ, чăваш халăхĕ пуррине тата вăл ĕçлеме те, ташлама та, юрлама та юратнине ĕнерхинчен ытларах пĕлеççĕ.

Чăваш çĕр-шывĕ, унăн тĕп хули ватă та капмар Шупашкар туслă та ĕçлĕ çыхăнусем, суту-илÿ, ытти хутшăнусем вăйланса нынă тапхăрта нумай енчен хăй тĕллĕн тата хăйне евĕр политика тытса пырас енĕпе палăрма пуçларĕ. Пирĕн çинчен тĕнчере те ытларах та ытларах пĕлме пуçларĕç. Кăна тĕрле тĕслĕхсемпе çирĕплетсе кăтартма пулать. Пĕрне кăна аса илтерем. Шупашкар 525 çул тултарнине уявланă вăхăтра пулса иртнĕ «Чăваш Ен – çĕнĕ вăхăт» выставка тĕнчене пирĕн çинчен ырă сас сарчĕ, чăвашсен типтерлĕхне, тараватлăхне, ĕçченлĕхне, пуласлăхне анлă кăтартрĕ. 25 патшалăхран килнĕ делегацисене хамăрăн пултарулăхпа тĕлĕнтерме пултартăмăр.

Мăн Канаша пухăннă çынсен, паллах, республика Президентĕнчен хамăр Чăваш çĕр-шывĕнчи паянхи лару-тăрăва мĕнле хакланине, Наци конгресĕ пирки мĕн шухăшланине, тулашри чăвашсемпе тытакан çыхăну çул-йĕрне мĕнле ăнланнине тата çитес вăхăтри утăмсен палăртăвне пĕлес килет.

Ку ыйтусен хуравĕсем маншăн паллă. Халăх пурнăçне, хуçалăхне, экономикине, культурине аталантарма тĕллев тытакан, çав тĕллеве тĕрĕс ĕçпе çирĕплетсе пыракан кирек хăш вăйсене те эпĕ таса кăмăлпа ырлатăп. Чăваш наци конгресĕ 1992 çулта чăваш халăхĕн чĕрĕлĕвĕ, патшалăх хăй тĕллĕнлĕхĕ, гражданлăх саккунĕн никĕсĕсем, Конституци концепцийĕ, предпринимательсен ĕçĕ-хĕлĕ татă ытти ĕçсем пирки документсем йышăннă. Вĕсем, пĕтĕмĕшле илсен, вырăнлă та вăхăтлă пулнă. Ун чухне палăртнă ĕçсенчен хăшĕ-пĕри пурнăçланса пырать ĕнте. Çак шухăшсенчен нумайăшĕ республикăри халăх реформин «Ниме» программине те кĕчĕç. Мĕншĕн тесен республикăн социаллă пурнăçĕпе экономикин хăй тĕллĕнлĕхне çирĕплетесси, культурăпа йĕрке-тирпейлĕхе хÿтĕлесси, ырлăх никĕсĕ пулса тăракан пĕлÿлĕхе пулăшасси маншăн пурнăç та, телей те.

Мăн Канаш ларăвне хутшăнакансене хумхантаракан тĕрлĕ ыйтусем хушшинче тулашри чăвашсемпе тытакан çыхăнăва аталантарасси уйрăмах кăсăклантарать. Конгресс хăйĕн Аслă пухăвĕнче наци политики енĕпе ĕçлекен Патшалăх комитетне тăвас ыйтăва хускатнăччĕ. Паянхи кун та пирĕн ун пек комитет çук-ха, вăл ĕçсене туса пыма культура тата национальноçсен ĕçĕсен министерствине хушнă. Пĕлетĕп, ыйтăва çапла татса пани пурне те тивĕçтермест. Конгресăн «Тĕпел» ятлă «çавра сĕтелĕ» те Президент çумĕнче наци хутшăнăвĕсен пайне тума сĕнет. Вăл йышĕпе пĕчĕк, анчах ĕç-хĕлĕпе, витĕмĕпе, пĕлтерĕшĕпе пысăк пулмалла. Унăн тĕп тĕллевĕ: республикăри тĕрлĕ халăхсен туслăхне çирĕплетесси, тулашри чăвашсене ĕçлĕ хутшăнусемпе пĕтĕçтерсе пурăнасси, ют çĕршывсенче пурăнакан ентешсемпе çыхăну тытасси, хамăрăн патшалăх органĕсене куллен тухса тăракан ыйтусене татса пама явăçтарасси.

Урăх йышши сĕнÿсем те пур. Сăмахран, Тулаш экономика çыхăнăвĕсемпе ĕçлекен комитета çĕнĕ вăй парса Чăваш Республикин ют çĕр-шыв ĕçĕсен министерстви туса хумалла. Ку вăл чăвашсен хăй тĕллĕнлĕхĕпе (суверенитечĕпе) питех те килĕшсе тăрать. Теприсем çине тăрсах гражданлăх ыйтăвĕсене хускатаççĕ. Ку шухăш та чăваш патшалăхĕпе халăхĕн units... 

Ыйтăвĕсем пурте пурнăç кăларса тăратнăскерсем, вĕсем мана та сахал мар шухăшлаттараççĕ, канăç памаççĕ. Президент указĕпе килĕшÿллĕн республикăра Конституци проектне тăвакан комисси ĕçе кÿлĕнчĕ ĕнтĕ, унта тĕрлĕ общество юхăмĕсемпе халăх депутачĕсем çырса хатĕрленĕ Тĕп саккун вариантĕсем пур. Халĕ вĕсене тĕплĕн тишкерсе тухса халăхпа сÿтсе явма хатĕрлесе çитерес пулать.

Çÿлерех хускатнă ыйтусем, паллах, Чăваш Республикин çĕнĕ Конституцийĕнче хăйсен хуравне тупĕç.

Наука, культура, вĕренÿ, хаçат ыйтăвĕсем çинчен Мăн Канаш ларăвĕнче хĕрÿ калаçу пуласси каламасăрах паллă. Чăвашла паха кĕнеке тухасси чакни, вĕренÿ хатĕрĕсем çитменни, тулашри чăвашсене культура центрĕсем, шкулсем уçма çителĕклĕ пулăшманни нумай çынна пăшăрхантарать.

Паллах, ыйтăвĕсем çителĕклĕ, вĕсене татса пама вăра çăмăл мар. Çапах та пĕрремĕш утăмсем турăмăр ĕнтĕ, тулашри чăвашсене пулăшас тĕллевпе Пушкăрт, Тутар, Крым республикисемпе Килĕшÿсем туса алă пусрăмăр, халĕ Удмурт тата Коми çĕр-шывĕсемпе тумалли Килĕшÿсем хатĕрлесе çитертĕмĕр.

Чăваш халăхне пурнăç тĕнче тăрăх сапаласа янă, анчах та эпир кирлĕ вăхăтра пуçтарăнса, хамăр йывăр шăпана çăмăллатас тесе майсем шырани аван. Чăвашсем пурăнман вырăн çĕр çинче çук та пуль. Кашни регионăн хăйĕн нуши, терчĕ, хĕнĕ. Çак йывăр ыйтусене татса пама Чăваш наци конгресĕ майне тупатех тесе шутлатăп. Паллах, çак ĕç вăл – Чăваш патшалăхĕн те... Чăваш наци конгресĕ тата Чăваш Ен Правительстви тĕрлĕ регионсенче пурăнакан чăвашсен туслăхне, экономикине, культурине çирĕплетме пулăшмашкăн пултарнине эпĕ чунран ĕненетĕп. **Пирĕн хамăр патшалăх суверенитетне, ытти регионсемпе туслă пурăнса, васкамасăр, çав вăхăтрах пит тăсмасăр, ĕçне лайăх пĕлсе çирĕплетсе пырас пулать.** Паллах, экономика проблемисем хальхи вăхăтра – малти вырăнта. Анчах экономикăпа культура та, политика та, тата ытти ыйтусем те пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă. Чĕлхе ыйтăвĕ вĕсен хушшинче – чи йывăрри те, кăткăсси те. Çакна эпир манмăпăр, хамăр ĕçре шута илсе пырăпăр. Çавăнпа та чăваш историне тĕплĕн вĕренме çĕнĕ учебниксем кăлармалла, чăваш чĕлхине пур ачапăча, вăтам шкул, аслă шкул учрежденийĕсенче ытти чĕлхесемпе пĕр шайра вĕрентсе пымалла. Тĕрĕссипе, чăваш халăхне аталантармалли патшалăх программине хатĕрлесе çитермелле.

Пăлхар-чăваш халăхĕн патшалăхне монгол-тутарсем çĕмĕрсе тăкнă пулсан та чура туса хурайман. Раççей, кайран Совет Союзĕн империйĕ те чăвашсене чĕркуçлентереймен. Эпир хамăр чĕлхене те, юрăсене те, тĕрĕсене те сыхласа хăварма пултарнă, ăруран-ăрăва, йăхран-йăха куçарса çамрăксене вĕрентсе пынă. Апла, çак вăхăтчен пире турă пĕтме паман пулсан, малашне та  пĕтместпĕрех. Аталанма пур майсем те пур. Чăваш наци тата культурин çĕнĕ аталану тапхăрĕ пуçланнине ĕненес килет.

Иртнĕ икĕ çул хушшинче палăртнă нумай ĕç пурнăçланчĕ, хăш-пĕрисем пурнăçланса пыраççĕ. Тата нумайрах – малашне тумаллисем. Çавăнпа пĕрле ĕçлер. «Ăçта пĕрлĕх – унта вăй», – тенĕ ваттисем.

Пĕлетпĕр: «Çиччĕ виç те пĕрре кае», – тенĕ авалах. Ĕнтĕ çиччĕ кăна мар, саккăр-тăххăр та виçрĕмĕр пулас. Нумай вакларăмăр, касрăмăр, çыпăçтарма та, çĕнетме те вăхăт çитрĕ. Ку ĕçе Чăваш наци конгресĕн ертÿçисем те хастарлăрах, пуçарулăрах, тимлĕрех, яваплăха, ĕçе пĕлсе, усăллăрах хутшăнасса шанатăп. Салам сăмахне вĕçлесе, сире пурсăра та паянхи-ыранхи ларусенче ăнăçлă пĕтĕмлетÿсем тума, кулленхи ĕçре, пурнăçра сывлăхлă, телейлĕ, пултарулă пулма ырă сунатăп.

Эсир тăвакан ĕç – истори шайĕпе – пысăк ĕç. Тавтапуç сире уншăн.
Тавах сире, тăванăмăрсем!
Ăнăçу сунатăп!

## ХАЛĂХ ВĂЙĔ – ПĔРЛĔХРЕ
### Ĕнер Шупашкарта ЧНК Мăн Канашĕ хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ

*Юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ. «Атăлпи» турист çурчĕ. Кăнтăрлахи апат хыççăн Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн анлă ларăвĕ малалла ĕçлерĕ. ЧР вĕрентÿ, ăслăлăх тата аслă шкул министрĕ* ***Р.Н. Морозов*** *чăваш наци шкулĕн малалла аталанмалли çул-йĕрĕ çинчен тухса каларĕ.*

– Кăçал Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ вĕрентӳ ĕçне аталантармалли Программа çирĕплетрĕ. Унта наци шкулĕсене çĕнетсе лайăххлатас, аталантарас ыйтусем тĕп вырăнта тăраççĕ. Вĕсене татса парас тĕлĕшпе шкулсем валли тăватă вариантпа вĕрентӳ планĕ хатĕрленĕ. Пуринче те наци-регион уйрăмлăхĕсене шута илнĕ. Çавна май истори, географи, биологи, çут çанталăк, ӳнер искусстви, музыка, ĕç, физкультура урокĕсен программисене наци компоненчĕсене кĕртнĕ. Шкулсенче «Тăван ен культури», «Халăх промыслисем» тата чăвашлăхпа çыхăннă ытти предметсене вĕрентме пуçларăмăр. Юлашки 2–3 çул хушшинче министерство Чăваш кĕнеке издательстви урлă 20 ытла кĕнекепе пособи кăларчĕ. Тăван ен культурине вĕрентме программа, вĕрентӳ пособийĕ хатĕрлесе çитертĕмĕр. Кĕнеке авторĕ – М.И. Скворцов профессор. Вăлах «Тăван ен культурин» 2-мĕш пайне хатĕрлет. Учительсене «Чăваш культури» урокĕсене вĕрентме пулăшас тĕллевпе меслет кăтартăвĕсем тухрĕç.

«Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккуна пурнăçлас тĕллевпе нумай нациллĕ шкулсенче пуринче те чăваш чĕлхине вĕрентме пуçларăмăр. Вырăс чĕлхипе калаçакан ачасене чăвашла вĕрентме программăсем тата 1–7 классем валли учебниксем хатĕрлесе çитертĕмĕр. Министерство республика тулашĕнчи чăваш наци вĕрентӳ учрежденийĕсемпе килĕшӳсем турĕ. Çавна май вĕсен чăваш чĕлхипе литература учителĕсене республикăри Вĕрентӳ институтĕнче ăсталăх шайне ӳстерме май паратпăр. Кăçал Пушкăртстанри Стерлитамак педагогика институтĕнче чăваш уйрăмне уçма пулăшрăмăр. Унсăр пуçне икĕ çул хушшинче республика тулашĕнчен Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культурин факультетне – 51, педагогика институчĕн чăваш чĕлхи уйрăмне 18 çамрăка вĕренме йышăннă.

Министр çавăн пекех малашне пурнăçламалли ĕçсене те палăртрĕ. Чи малтанах программăсемпе вĕрентӳ хатĕрĕсене çĕнетмеллине асăнчĕ. Педагогика учрежденийĕсенче учительсене наци шкулĕсенче икĕ чĕлхепе усă курса ĕçлеме вĕрентсе кăлармаллине, шкул ертӳçисен, педагогика коллективĕсен, ашшĕ-амăшĕн ачасен психологине улăштарас енĕпе тĕплĕ ĕçлемеллине шута илме сĕнчĕ.

Вĕрентӳ, ăслăлăх тата аслă шкул министрĕн сăмахĕ залра ларакансене хумхантарчех. **Н. Енилин** художник шкулта ачасем чăваш чĕлхипе эрнере 2 урок çеç иртternипе кăмăлсăр пулнине, **Г. Волков** академик педагогика институтĕнче вырнаçтарнă портретсен хушшинче пĕр чăваш сăнĕ те çуккишĕн пăшăрханнине, **О. Мустаев** тележурналист тĕрлĕ регионсенче чăваш уйрăмĕсем уçăлма пуçланă май вĕсене пулăшас тĕлĕшпе министерствăра ятарлă ушкăн йĕркелеме кирлине палăртрĕç. **Б. Тихонов, П. Пупин, Г. Остряков, В. Туркай** сăмах илчĕç. Красноармейски районĕнчен килнĕ **В. Михайлов** учитель вара министра «çапса хуçрĕ»: «Эсир чăваш чĕлхипе тата литературипе кĕнекесем пур тетĕр, анчах пирĕн чăн чăваш шкулĕ çук. Вĕсене чăваш чĕлхи вĕрентекен шкул тесен тĕрĕсрех пулĕ. Таса чăваш шкулĕ тăвас тесен пур предмета та тăван чĕлхепе вĕрентмелле».

ЧНК Мăн Канашĕн анлă ларăвне хутшăнакан хăнасем хушшинче Пĕтĕм тĕнчери тутарсен конгресĕн ĕçтăвкомĕн членĕ **Марс Шамсутдинов** та пулчĕ. Вăл та сăмах илчĕ:

– Тутарсемпе чăвашсем – килĕштерсе пурăнакан кӳршĕсем. Акă эпĕ сирĕн сăмахсене итлесе ларнă хыççăн çакăн пек пĕтĕмлетӳ турăм: сирĕн те, пирĕн те пĕр пек ыйтусемех. Вĕсем мĕнпе çыхăнни те паллă – хăй вăхăтĕнче пирĕн йышши халăхсем Раççей империйĕн колонийĕсем пулнă. Мускав хуçа пулнă май хамăрăн çивĕч ыйтусене хамăр татса пама пултарайман. Паян вара, вĕсене пĕтерес тесен, çав пăтăрмахсен тĕп çăл куçне пĕлмелле. Влаçпа халăх пĕр шухăшлă чухне çеç вĕсенчен хăтăлма пулĕ. Тутарстан ку енĕпе Раççейре пĕрремĕшĕ «çапăçăва» тухса çамки çине мăкăльсем лартаканĕ пулчĕ пуль. Пĕччен халăх пысăк ĕç тăваймĕ, çавăнпа пирĕн пĕрле пулмалла. Ăраскалăмăрсем пĕр майлах, мĕншĕн тесен чăвашсем те, тутарсем те хăйсен тăван йăвисенчен вĕççе тухса саланса кайнă. Тулайри ентешсен шăпи хумхантарать, ара, халăхăмăрăн виççĕ тăваттăмĕш пайĕ республика тулашĕнче. Сирĕн те пирĕнни майлах. Ытти халăхсен те. Çак «вак» халăхсем пĕр тăрăхра – Уралпа Атăл хушшинче – вырнаçнă. Кăçал пуш уйăхĕнче асăннă регионта пурăнакансен Ассамблейин съездне Шупашкарта ирттертĕмĕр.

Тутар тусăмăрсене паян мĕн хумхантарать? Вĕсен тулайри ентешĕсен шăпи. Ку енĕпе тутар наци партине йĕркелесшĕн вĕсем. Мĕн тума пулăшĕ-ха вăл? Тутарсене, вĕсем тĕрлĕ вырăнта пурăнаççĕ пулсан та, унти патшалăх влаçĕ умĕнче хăйсен интересĕсене хӳтĕлеме, халăхăн чăн историне пĕлме. Пирĕн те кӳршĕсенчен вĕренмелли сахал мар. Çакнашкал пысăк форум-пухусенче пĕр-пĕрне итлени, канаш пани кирлех. Çыхăнусене çирĕплетес, хамăра хамăр пулăшас тесен.

«Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ, ЧНК Мăн Канашĕн членĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ **А.П. Леонтьев** чăваш наци массăллă информаци хатĕрĕсем пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕ:

– Икĕ çул каялла ЧНК «Массăллă информаци хатĕрĕсем çинчен» резолюци йышăннăччĕ. Унта çакна та палăртнăччĕ: Пичетпе информаци патшалăх комитечĕн, ЧР Аслă Совечĕн Массăллă информаци хатĕрĕсемпе, общество организацийĕсемпе тата граждансен юхăмĕсемпе çыхăну тытас, общественноç шухăшне тишкерес енĕпе ĕçлекен яланхи комиссийĕпе пĕрле чăваш хаçат-журналне рынок экономикин условийĕсенче 1993–1995 çулсенче аталантармалли концепци палăртса хатĕрлемелле тата ăна ЧР Министрсен Кабинетĕнче пăхса тухма тăратмалла тенĕччĕ. Анчах концепци хальлĕхе çук.

Иккĕмĕш пункт: Чăваш тедерадиокомпанийĕн чăвашла хатĕрлекен радиопа телевидени передачисен вăхăтне талăкра 6–7 сехет тарăн тăсмалла... Хальлĕхе ыйту татăлман.

Виççĕмĕш пункт: Чăваш Республикин уйрăм ТВ-каналне уçас ыйтăва татса памалла... Ыйту тахçанах уçă, хупăнасси паллă мар.

Тăваттăмĕш пункт. Чăваш Республикин Информаципе пичет патшалăх комитечĕ çумĕнче «Интерхыпар» информаци агентствине туса хумалла... Ку енĕпе 3–4 çул каяллах хатĕрленĕ проект пур, каллех нимĕн те туман. Унтах Чăваш телерадиокомпанийĕпе пĕрле массăллă информаци хатĕрĕсем валли журналистсен наци кадрĕсене хатĕрлемелли системăна палăртмалла. Чăваш патшалăх университетĕнче кăçал журналистика уйрăмне уçнă. Савăнмалла пек. Çапах хальлĕхе пессимист пулсах юлатăп, мĕншĕн тесен вĕсене хатĕрлекен кадрсем хăйсем çук.

**А.П. Леонтьев** çавăн пекех чăваш пичечĕн паянхи лару-тăрăвĕ тата ун мĕнлерех пулмалли пирки те каларĕ. Чăваш правительстви çĕнĕрен тухма пуçланă хаçатсене пулăшманран пирĕн «Паянтан», «Аван-и» тата ытти хаçатсем пĕтсе ларнине, çавна кура парламентăн радикаллă утăмсем тума тивессе палăртрĕ. Ку енĕпе Алексей Петрович Леонтьев шухăшĕпе – чăвашла кăларăмсене тĕрлĕ налуксенчен хăтармалла; хальхи вăхăтра массăллă информаци хатĕрĕсем прогрессивлă технологисемпе уса курма пуçланă май, чăвашла кăларăмсем йывăрлăхсемпе тĕл пулаççĕ (специалистсем, хăш-пĕр хатĕрсем çук), çавăнпа та ку енĕпе патшалăх программи хатĕрлемелле.

Ульяновскри чăваш культура обществи ячĕпе **И.С. Кирюшкин** тухса каларĕ. Ăна Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн шăпи пăшăрхантарать. 1956 çулта шкула хупса лартнă. Çавăнтанпа пырать те ĕнтĕ кĕрешӳ. И.Я. Яковлев шкулĕн пĕлтерĕшĕ пирки калама кирлĕ мар ĕнтĕ, вăл чăваш халăхĕн пурлăхĕ, культура центрĕ, учитель кадрĕсем хатĕрлекен чăн-чăн вучах пулнă.

Раççей Федерацийĕн Наци тата регион политикин министерствин пай ертӳçи **П.И. Надомишний** «Наци культура автономийĕсем пирки» Раççей Федерацийĕн саккун проекчĕпе паллаштарчĕ. Мускавран килнĕ тӳре шухăшĕпе – асăннă саккун проекчĕ тĕрлĕ наци гражданĕсен прависемпе ирĕкĕсене, Раççей Федерацийĕнче хăйсен наци патшалăх йĕркеленĕвĕ çук халăхсен прависене культура,

чĕлхе, воспитани, вĕрентӳ, информаци енĕпе хӳтĕлеме пулăшĕ. Çапла пулĕ-и е çук-и, хальлĕхе ку проект çеç-ха, ЧНК Мăн Канашĕн анлă ларăвĕн ĕçне хутшăннисенчен хăшĕ-пĕри (тĕслĕхрен, **Б. Волков, В. Тимофеев, В. Калмыков, А. Иванов-Ехвет, Г. Волков, В. Акташев** тата ыттисем) унта улшăнусем тума кирлине палăртрĕç.

Надежда СМИРНОВА.

## «ТĂВАНСЕМПЕ ПĔРЛЕШНĔ ЧУХ...»
### (Уçă çыру)

Чăваш çĕр-шывĕн элтеперне Н.В. ФЕДОРОВА
Патшалăх Канашĕн хумкĕрекеçине В.С. ШУРЧАНОВА
Тӳре-шара пӳлмекĕн аслă тӳрине Э.А. АБЛЯКИМОВА

Республика лавне Элтепер тытăмĕ кулĕннĕренпе канăçсăр пĕрремĕш çулталăк йĕркеллĕх иртсе кайрĕ. Çакă Сире тата хура халăха ырă сунса саламлама сăлтав парать, малашлăх пирки шухăшлама хистет. Паян эпир Сире пайтах çынна кăсăклантаракан виçĕ япала çинчен хамăр шухăша пĕлтерес тетпĕр.

1. Чăваш наци конгресĕн черетлĕ Аслă пухăвне 1995 çулхи çĕртме уйăхĕн 21—23-мĕшĕсенче Шупашкарта ирттерме йышăннă. Патшалăх Кунĕ çĕртмен 24-мĕшĕсенче килет. Çав вăхăтрах, ахăртнех, Республика Акатуйĕ пулать.

Чăваш çĕр-шывĕн çак виçĕ пысăк уявне кăçал Чăваш патшалăхĕ чăмăртаннăранпа 1100 çул, çĕнĕрен чĕрĕлнĕренпе 75 çул çитнисене халалласа ирттерме, пĕрне тепринпе килĕштерсе йĕркелеме сĕнетпĕр. Çапла туни халăха пĕрлештерес, тĕрлĕ юхăмсене çураçтарас, хăнавĕрле пухас, укçа-тенкĕ уйăрас тата ытти енчен меллĕ пулĕччĕ.

Шупашкар чаплă уявсем ирттерме пĕлнине халăх курса ĕненчĕ. Халăхăн Аслă уявĕсене асаттесем пилленĕ пек килĕшӳллĕ йĕркелесен Чĕрĕлӳ ĕçĕ пархатар курĕччĕ.

2. Тăванлă-хурăнташлă халăхсем пурте хăйсен уявĕсемпе, йăлисемпе, тĕнĕ-ĕненĕвĕпе çыхăннă авалхи тата паянхи тĕнче курăм ыйтăвĕсене тĕпчесе кĕнекесем кăлараççĕ, упранса юлнă еткерне халăх çӳпçине каялла тирпейлесе хураççĕ. Чăвашсен ĕненĕвĕпе йăли-йĕрки вĕсеннинчен кая мар. Анчах ăна нихăш институт та тĕпчемест, халăх философийĕпе пурнăç йĕркин никĕсĕ вырăнне картмасть. Çак йăнăша тӳрлетмелле.

Чăваш йăлине тата тĕнне тытса пурăнакансем Шупашкарта пысăк Керем (халăх йăлисен çуртне) лартма тăрăшаççĕ. Ăна хăпартма Чăваш патшалăхĕ ытти тĕн çурчĕсене (чиркӳ, мечĕт) лартма пулăшнинчен кая мар тимлĕх хума тивĕç: халăхсен Килĕшӳлĕхĕпе Туслăхне кирек хăçан та Танлăх никĕсĕ çинче кăна тĕрĕс çирĕплетме пулать.

3. Шупашкар хулинче тĕрлĕ халăхпа тата тулай чăвашĕсемпе ĕçлекен сумлă орган тусă хурасси — Чăваш наци конгресĕ хускатнă тĕп ыйтусенчен пĕри. Халĕ тулай чăвашĕсем пурăнакан çĕрсенче чăваш элчĕлĕхĕсене йĕркелеме нихçанхинчен меллĕрех вăхăт çитрĕ.

Тулай чăвашĕсен культура центрĕсене, обществисене, информаци пайĕсене, вулавăшсемпе парнелĕх суту сентрисене элчĕлĕхсем тавра пĕтĕçтерни пин-пин пăшăрхануран хăтарнă пулĕччĕ.

Сăмахран, Ĕпхӳре П.М. Миронов ăсчах пурăннă çуртра, Самарта, Хусанта, Чĕмпĕрте, Кемĕрте чăваш клубĕсем е наци шкулĕсем пулнă çуртсенче чăваш элчĕлĕхĕсен вучахĕсене чĕртни чăваш халăхĕпе республика ертӳçисене чыс-хисеп кӳрĕччĕ.

Чăваш элчĕлĕхĕсене уçни патшалăх йĕркеленнĕренпе 1100 çул, çĕнĕрен чĕрĕлме пуçланнăранпа 75 çул çитнине палăртакан хаклă парне пулĕччĕ.

Чăваш наци конгресĕн элтеперĕ Атнер ХУСАНКАЙ,
Конгресс элтеперĕн çумĕ Виталий СТАНЬЯЛ.
*«Хыпар», 13.01.1995, 6№.*

## ДЕПУТАТСЕМ ЧЕЧНЯНА ТУХСА КАЙНĂ

*Нарăсăн 13-мĕшĕсенче ирхине Чăваш Ен Патшалăх Канашĕн депутачĕсен делегацийĕ Чечняна тухса кайнă.*

Ăна вăрçă ĕçĕсем малалла пыракан района ярасси çинчен Патшалăх Канашĕн çиччĕмĕш сессийĕ ĕçлеме тытăннă пĕрремĕш кунах йышăннă, «Чечен Республикинчи ĕçсем пирки» постановление кĕртнĕ. Вулакансем ас тăваççĕ пулĕ (документа республика хаçачĕсенче пичетленĕ), постановленире тĕрлĕ мерăсем палăртса хунă, вĕсене пурнăça кĕртни, депутатсен шучĕпе, Чечен Республикинчи вăрçă ĕçĕсене чарса лартмашкăн, хирĕçӳсене мирлĕ, Конституци палăртнă майсемпе йĕркелесе ямашкăн пулăшма тивĕçлĕ.

Чăваш парламентарийĕсен Чечняна кайнă делегацине запасри генерал-майор, халĕ «Приволжский» банк правленийĕн председателĕн çумĕ пулса ĕçлекен **Вячеслав ТИХОНОВ** ертсе пырать. Ушкăна Патшалăх Канашĕн икĕ комитечĕн председателĕсем — саккун кăларас тата саккунлăх енĕпе ĕçлекен комитет председателе **Юрий ПАВЛОВ,** вырăнти самоуправлени органĕсем тата общество пĕрлешĕвĕсемпе енĕпе ĕçлекен комитет председателĕ **Вячеслав ТИМОФЕЕВ**, çавăн пекех «Хыпар» хаçат редакторĕ, [ЧНК Мăн Канаш членĕ] **Алексей ЛЕОНТЬЕВ** кĕреççĕ. Республика парламенчĕ хушнипе вĕсем çав регионти ĕçсемпе паллашма тата Раççей Хĕç-пăшаллă Вăйĕсенче службăра таăакан, Чăваш Енте çуралнă, халĕ Чечняна янă салтаксен шăпине пĕлме тивĕçлĕ.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн пресс-службин.

## ЧĂВАШ ПАРЛАМЕНТАРИЙĔСЕМ ДУДАЕВПА КУРСА КАЛАÇНĂ

*Чечен Республикине кайса килнĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн делегацийĕ Шупашкара таврăнчĕ. Ĕнер парламентарисем Советсен çуртĕнче пресс-конференци ирттерчĕç. Журналистсен ыйтăвĕсене В.А. Тихонов, Ю.С. Павлов, В.А. Тимофеев, А.П. Леонтьев депутатсем тата «Хыпар» хаçатăн фотокорреспонденчĕ Г.Т. Верблюдов хуравларĕç. Паллах, темиçе сехете тăсăлнă калаçăва пĕтĕмпех илсе кăтартма май çук. Вунă кун хушши вăрçă хирĕ тăрăх çӳренĕ хыççăн курни-илтнине тӳрех каласа та параймăн. Çавна шута илсе эпир пресс-конференцин хăш-пĕр саманчĕсем çинче çеç чарăнса тăрас терĕмĕр.*

**В.А. ТИХОНОВ:** Чечняна тухса каяс умĕн эпир хамăр ума çакăн пек тĕллевсем лартрăмăр. Чи малтанах вырăна çитсе унта мĕн пулса иртнине хамăр куçпа курса хакласси. Иккĕмĕшĕнчен, тыткăна лекнĕ пирĕн ентешсен кун-çулне тĕпчесе пĕлесси. Виççĕмĕшĕнчен, хыпарсăр çухалнисене шыраса тупасси. Тăваттăмĕшĕнчен, хамăр мĕн курнине халăха каласа парасси. Пирĕн ывăл-хĕрсем унта юн тăкаççĕ пулсан ашшĕ-амăшĕ тĕрĕссине пĕлме тивĕç. Вунă кун хушшинче таçта та çитнĕ, такампа та калаçнă. Хăш-пĕр ыйтусене татса парас шанчăк çуралчĕ.

Паян унта мĕн пулса иртет-ха? Эпир, депутатсем, çул çинче çапăçакан икĕ ен хушшине лекнĕ май, вĕсем пире хирĕç хĕç-пăшалпа усă курассине те кĕтме пултарнă. Ун пек гаранти памаççĕ унта. Эпир халь Чечняра мĕншĕн вăрçă вучĕ ялкăшни пирки пуçа вататпăр. Айăплисене шыратпăр. Политикăна ытлашши кĕрсе каяс теместĕп. Центрăн ăссăрла политики çапăçусем патне илсе пычĕ. Шутлăр-ха, хăй вăхăтĕнче унта тăвата дивизие хĕç-пăшаллантармалăх тĕрлĕ хатĕр хăварнă. Кам айăплă çакăншăн? Мускав. Вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче Дудаевăн чи лайăх хĕç-пăшалланнă ушкăнĕсем çапăçнă. Интеллигенци хирĕç тăрава хутшăнман та темелле. Авиаци мирлĕ çынсем пурăнакан кварталсене бомбăпа аркатнă хыççăн тин çеç шкула кайма пуçланисем те, пенси çулĕнчи ватăсем те алла пăшал тытнă. Халăх вăрçи пырать. Çемьери е çывăх тăванĕсен ачи-пăчине вăлернĕшĕн е ишĕлчĕк айне тунăшăн чеченсем халь тавăраççĕ. Бандитсем тетпĕр те — ултавлă майпа пысăк укçана хайсен кĕсйине чикнисем унта çук ĕнтĕ. Ытарлă каласан, вĕсем тухса шăвăннă е Канар утравĕсем çинче хĕртĕнсе выртаççĕ.

Çар операцине çав тери тăнсăр йĕркеленĕ генералсене ӳпкелес килет. Хам та генерал пулнă май çапла калатăп: пĕр ялта чарăнсан Раççей çарĕсем ним çук çĕртен çынсен çурчĕсем çине пеме пуçларĕç. Ялта, эпĕ пĕлнĕ тăрăх, пĕр ополченец та çукчĕ. Е пирĕн салтаксем ӳсĕрпе çавăн пек хăтланчĕç-ши? Çарта эрехпе иртĕхни паллă. Ун пек тĕслĕхсене хамăр та курса ĕнентĕмĕр.

Шухăшлаттаракан тепĕр япала вăл — çапăçакан çар хĕç-пăшалăн

усă курма чарнă тĕслĕхĕсемпе усă курни. Пĕлетĕр-и: çĕнĕ йышши бомбăсем пăрахаççĕ. Çав пĕр бомбăран таврана 1200 пин йĕп сирпĕнет. Ку бомба халăхшăн мĕнле хăрушă пулнине ăна тÿссе курнисем çеç пĕлеççĕ. Тимофеев пĕр йĕпне пĕрле илсе килнĕ.

**В.А. ТИМОФЕЕВ:** Мана уйрăмах пĕр япала тĕлĕнтерчĕ. Чеченсемпе кÿршĕллĕ пурăнакан ингушсем, карачайсем, кабардинсем, балкарсем Грознăйран ирĕксĕр тарса тухнă çемьесене çав тери тараватйышăнаççĕ. Юлашки çăкăрне вĕсемпе пайлаççĕ. 15–20 çынна йышăннă çемьесем те пур. Вĕсен пурнăç условийĕсене питĕ лайăх пĕлетĕр.

Эпĕ шутланă тăрăх, чăваш халăхĕ те чечен халăхĕн нушине ăнланса йышăнĕ. Май килнĕ тарăн пулăшмалла вĕсене. Халь вĕсене пирĕн пулăшу сывлăш пекех кирлĕ. Сăмахран, балкарсем, 120 пинлĕ халăх, унта 10 КамАЗ гуманитари пулăшăвĕ ăсатни çинчен каласа пачĕç. Эпир те çак инкекре чеченсене алă тăсса пама тивĕç. Çапăçу пынă çĕртен тарса тухнисене пĕр вăхăтлăх 25 пин тенкĕлĕх пулăшу параççĕ. Унпа мĕнех тăвайăн?

Эпир Джохар Дудаевпа хăйĕнпе Гудермесра тĕл пулса калаçрăмăр. Мĕнле тĕл пулни пирки, мĕнле шыраса тупни пирки халĕ тĕплĕн пĕлтерейместĕп. Вĕсен çыннисем пире пĕр çурт путвалне илсе кайрĕç. Эпир Чăваш Республикинчен килнине пĕлсен чăрмавĕ-мĕнĕ ытлашши сиксе тухмарĕ. Сехет çурă ытла калаçрăмăр. Ăшшăн, нимĕн пытармасăр. Дудаевăн калаçăвĕнчен паллă: чечен халăхĕ Мускав влаçĕсене шанма пăрахнă. Çавăнпа пурте алла пăшал тытса хăйсен кил-çуртне хÿтĕлеççĕ. Эпĕ автомат çакнă 65 çулхи карчăка хам куçпа куртăм. Мускав халăхпа çапăçать.

Хамăр мĕн курни-илтнине эпир кÿршĕллĕ республикăсен ертÿçисене, халăха уççăн каласа парас шухăшлă. Хамăр шăпана хамăрăн татса пама вăхăт çитнĕ.

**А.П. ЛЕОНТЬЕВ:** Раççейри массăллă информаци хатĕрĕсем халăха çав тери суяççĕ. Гудермесра, ополченин база лагерĕнче, пулса куртăмăр та унта пĕр бандита та тĕл пулмарăмăр. Ĕмĕртен çĕр ĕçĕпе пурăннисем, учительсем, врачсем, хуçалăх ертÿçисем хăйсен тăван çĕр-шывне хÿтĕлеме тухнă. Манăн вĕсене бандит тесе каламаниепле те чĕлхе çаврăнмасть. Пĕр çурта кĕтĕмĕр те шалта 30 ополченецпа курса калаçрăмăр. Пĕлетĕр-и: пурте пĕр ялтан, пĕр йăхран.

Оборона министрĕ Павел Грачев калашле, «Дудаева сутăннă массăллă информаци хатĕрĕсем», Мускаврисем пирки калатăп, куçăн суйнине çирĕплетекен пĕр тĕслĕх çеç. Эпир Гудермесра чухне Мускав радиовĕ çак хулари старейшинăсем пухăнса Гудермеса Раççей çарĕсене çапăçусăрах пама килĕшни çинчен пĕлтерчĕ. Йăлтах суя. Пухăвне те пухман, ун пек йышăну та туман.

Дудаевпа эпир каçхи 8 сехетре тĕл пултăмăр. Хăйне çирĕп тытать, хуçăлман. Вăл панă интервьюна магнитофонпа çырса илтĕмĕр. Ăна хаçатсенче пичетлесшĕн. Кизлярта пирĕн республикăран кайнă шалти çарсен чаçĕ тăрать. Çĕре яхăн çын. Вĕсем çапăçусене тÿрремĕнех хутшăнмаççĕ. Çулсене, кĕперсене сыхлаççĕ. Çапăçакан чаççенчи ентешсене курма май килмерĕ. Çар командованийĕнчен пире кăсăклантаракан информаци илме питĕ йывăр. Çул çинче пăтăрмахсем чылай сиксе тухрĕç.

**Ю.С. ПАВЛОВ:** Чеченсем Чăваш Республикин Президенчĕн Н. Федоровăн вăрçа хирĕçле утăмĕсем пирки илтнĕ, пĕлеççĕ. Чăваш халăхне хисепленине палăртрĕç вĕсем. Грознăйран хăтăлса тухнă мирлĕ çынсем каласа пани вара нихçан асран тухас çук. Тĕрĕссипе – хулара чеченсем юлманпа пĕрех темелле. Вĕсем ялсене, хăйсен тăванхурăнташĕ патне туха-туха кайнă. Вырăссен вара ăçта кайса кĕмелле?

Салтаксем ĕçсе супни тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерет. Дисциплина хавшанă. Çакă та чылай вилĕм патне илсе пырать пулĕ. Чеченсем пурăнакан ялсенче пурте пăшалпа çÿреççĕ.

Эпĕ урамра çакăн пек пĕлтерÿ вуларăм: «КамАЗ» автомашинăна пистолетпа улăштаратăп». Вăт çавăн пек лару-тăру.

**Г.Т. ВЕРБЛЮДОВ:** Пĕр хулари пасарта çÿрерĕмĕр. Тем те сутаççĕ. Апельсинсемпе, ананассемпе юнашар пистолетсем, автоматсем. 800 пин е миллион тенкĕ укçапа пăшал ирĕклĕнех туянма пулать.

Сăмах май, Дудаев енче чеченсем çеç мар, ытти наци çыннисем те çапăçаççĕ. Ополченецсен тĕп базинче вырăссем те пурччĕ. Вунă кун хушшинче фотоаппаратпа 21 пленка ÿкертĕм. Тĕрлĕ самантсем, тĕрлĕ сăнсем. Кашни кадртах – вăрçă сăнĕ.

Пресс-конференци вĕçленнĕ хыççăн журналистсене Чечняра ÿкернĕ видеокадрсене кăтартрĕç. Лăпкăн пăхса лараймастăн вĕсене. Чечняран таврăннă парламент делегацийĕ кинокадрсене йĕркелесе çитерсе вĕсемпе халăха та паллаштарас шухăшлă. Халĕ вĕсем хăйсен хăшпĕр шухăшĕсене калани те çителĕклĕ терĕç. Çитес кунсенче «Хыпар» вулаканĕсем çĕнĕ информаци илес шанчăк пур.

Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.
*«Хыпар», 25.02.1995, 39№.*

## «ЧĂВАШ ПУЛМА ÇĂМĂЛ МАР...»

*Пуш уйăхĕн 17-мĕшĕсенче Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕ пухăнать. Çавна май «Хыпар» корреспонденчĕ ЧНК президенчĕпе Атнер ХУСАНКАЙПА курса калаçнă.*

**– Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн черетлĕ ларăвĕ Устав тăрăх черет çитнипе çыхăннă-и е мĕнле те пулин васкавлă ыйту сиксе тухнă-и?**

– ЧНК Мăн Канашĕн ларăвĕ чăнах та черетлĕ лару пулать, ăна Уставпа килĕшÿллĕн ултă уйăхра пĕр хутран кая мар ирттермелле. Тепĕр сăлтав: кăçал Чăваш халăхĕшĕн, Чăваш Республикишĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ уяв пулмалла. Шел те, пĕлтĕр юпа уйăхĕнче Мăн Канашăн анлă ларăвĕнче çакăн пирки тунă йышăнусене пирĕн тÿре-шара хальхи вăхăтчен те шута илмерĕ. Ку мĕне пĕлтерет-ши? Е вĕсем пирĕн (чăваш) истори кун-çулне пач та чухламаççĕ-и? Е вĕсем ăна пĕлесшĕн те мар-и? Çапах та Пăлхар-чăваш патшалăхĕ Тухăç Европа историйĕнче, пĕтĕм тĕрĕк тĕнчин историйĕнче паллă вырăн йышăннă. Хамăрăн аваллăха, пулса иртнине пĕлмесĕр паянхи кунăн çивĕч ыйтăвĕсене, малашлăх тĕллевĕсене сÿтсе явма, йĕркеллĕ палăртма май килмест пулĕ. Çав вăхăтрах чăваш совет патшалăхлăхĕ те халăхăмăр кун-çулĕнче усăсăр пулман, 70 çул хушшинче (уйрăмах пуçламăш тапхăрта) чĕлхе, культурăпа ÿнер аталанăвне витĕм пама пултарнă.

ЧР Конституцине (Тĕп Саккуна) йышăнасшăн эпир, ку та питĕ пĕлтерĕшлĕ ĕç. Эпир мĕнле патшалăхра пурăнасшăн? Ун пирки ЧНК хăйĕн сăмахне калама тивĕç.

**– Калама калатпăр-ха, анчах каллех сăмаха çилпе вĕçтерни çеç пулмĕ-и? ЧНК Аслă Пухăвĕнче ЧР пулас Конституцийĕн тĕп никĕсĕсене сĕннĕччĕ – çакна никам та хăлхана чикмерĕ, хаçатсенче халь пичетленĕ проектра та шута илмен вĕсене. Гражданлăх саккунне васкавлă йышăнма сĕннĕччĕ – каллех çук, çав вăхăтрах «выçă, Мускавран уйрăлсан вилсе выртакан» Чăваш Ене çуллен çĕр-çĕр вырăс е урăх халăх çынни килсе вырнаçать (выçă Каракума каймасть!). Чăвашĕ хăй тĕнчене саланать, кунта пурăнакансен йышĕнче чăваш шучĕ чакать. 67,8 процент чăваш пурăнать тетчĕç республикара – ман шутпа, халь эпир 65 процентран ытла мар. Танлаштарма: автономи пуçланă чухне 80 процент ытла пулнă! Тен, лăпкă, саккунлă майсемпе кĕрешни çитет, урăхла, витĕмлĕрех мелсем шырамалла – Раççейре мĕнле майсене хисепленине никама та аса илтерме кирлĕ мар-тăр.**

– Эсĕ каланинче тĕрĕслĕх пурах. Хальхи самантра хура халăха саккун – Конституци е гражданлăх саккунĕ – чăнах та кирлĕ мар. Мĕншĕн-ха? Мĕншĕн тесен халăх курать-çке – паянхи тÿре-шара саккун йышăнма хатĕр, йышăнать те (саккунсем хушшинче лайăххисем те пур!), анчах никам та вĕсене пурнăçлама васкамасть. Çавăнпа хура халăх саккун вăйне шанма пăрахнă. Çапах та эпир ялан право йĕркине хисепленине, право патшалăхĕ тĕп вырăнта пулмаллине палăртаттăмăрччĕ, халĕ эпĕ те çак шухăш тĕрĕс пулни пирки иккĕленме пуçларăм. Енчен те влаç хăйĕн халăхне хирĕç вăрçăпа тухать пулсан, халăхăн та, пирĕн те тÿре-шарана «шăл кăтартмалла» пуль.

Эпĕ юлашки вăхăтра Ирланди наци юхăмĕпе питĕ хытă интересленетĕп. Унта ИРÇ (Ирланди Республика Çарĕ), «Шинн фейн» политика партийĕ пур. Вĕсем вирлĕ кĕрешеççĕ-çке. Пирĕн шăпа, пирĕн лару-тăру урăхла, анчах тĕнчери наци юхăмĕн опычĕ пире кирлех. Сăмах май каласан, «Шинн фейн» чăвашла «Пире хамăра» тени пулать. Хамăршăн хамăр тăрăшмалла. Хамăр националистсене эпĕ Джеймс Джойсăн тĕнчипе паллă «Улисс» романне вуласа тухма сĕннĕ пулăттăм. Çав радикаллă наци юхăмĕ мĕнле çуралнине, аталанса кайнине унта питĕ аван çырса кăтартнă.

Пирĕн Тимахви Хури те – чăваш наци юхăмĕ çуралнă чухнехи хаклă çыннăмăр – радикаллă çак меслетсенчен ютшăнман. Эпир ытла лăпкă, ытла йăваш халăх. Нăйкăшатпăр, нăйкăшатпăр, çине тăрса вара чăвашлăх ыйтăвне палăртакан çукрах. Чечен халăхĕн, ав, саламламалли сăмах та пирĕн пек мар. Хастар янрать, йăлтăркка хĕç кăларнă пек: «Ирĕк пул!»

**– Хĕрÿленмесĕртерех калаççан вара, ман шутпа, Чăваш наци конгресĕ сĕнекен ЧР Конституцийĕн проекчĕпе халăха анлă паллаштарма та май çук-çке (ЧР Конституци комиссийĕ сĕннĕ тăватă проектран пĕрне те пичетлемен, пĕртен пĕр пач çĕнĕ – пиллĕкмĕш – проекта çеç кун çути кăтартнă), ăна парламентра йышăнтарма е референдума кăларма ĕмĕтленни вара – хайсене  май утопи. Хăть истори валли юлтăр тетĕр-и хăвăр хатĕрленĕ Конституци проекчĕ?**

– Утопи (грекларан куçарсан вăл «çук – вырăн» тени пулать) вăл утопиех, анчах çак ăнлав çĕнĕ шухăш, çĕнĕ ĕмĕт çуратать. Эпир – пултарнă тарăн – Чăваш патшалăхĕн Тĕп Саккунĕн проектне хатĕрлесе çитертĕмĕр. Çак ĕçпе эпир Чăваш наци юхăмĕн XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи ялавне тепĕр хут çĕклерĕмĕр. Конституци комиссийĕн ĕç ушканĕнче тăватă проекта сÿтсе явнă чух пире çавăн пек каланă: сирĕн проект хальхи самана валли мар, вăл тахçан пулмалли малашлăх тĕллевĕ. Тĕрĕс! Эпир те çавăн пек шухăшлатпăр, çак тĕллеве асра тытса ĕçлерĕмĕр – Чăваш Республикин Тĕп Саккунĕ паянхи кун валли кăна мар, пулас ÿсĕм валли те пулмалла-çке. Пирĕн Конституци проекчĕ валли хальхи сĕмленÿ (Петĕр Яккусен калашле) тапхăрĕнче вырăн çук, çак проект вăл чăн-чăн идеал. Анчах эпир çак питĕ пĕлтерĕшлĕ документа демократипе право никĕсĕ çинче хатĕрлерĕмĕр.

Халĕ, ман шутпа, никĕс хывса хăвармалла, сутă, капмар çурт эпир туса хăвараяс çук, никĕсне хывасси – пирĕн тивĕç. ЧНК сĕнекен Тĕп Саккун проекчĕ çав никĕс пулинччĕ!

**– Ку – ĕмĕт, пархатарлă ĕмĕт тейĕпĕр. Ăна пурнăçа кĕртме ытла пархатарлах мар саккун кăларавçăсем тата ĕç пурнăçлавçăсем кансĕрлеççĕ иккен. Тиркешме çăмăл, анчах та Чăваш наци конгресĕн ĕçне-хĕлне те çав асăннă органсен ĕçĕнчен мала хурсах хакламаççĕ вĕт-ха. ЧНК кадрĕсенче те пăтрашу: пĕрисене пăратăр, теприсем хăлаçланаççĕ-хăлаçланаççĕ те – малтанхисенчен те япăхрах ĕçлеççĕ. Халĕ те акă черетлĕ улшăнусем палăртнă. Усса кайĕ-ши вăл?**

– Эпĕ тахçан каланăччĕ: чи пысăк хăрушлăх вăл влаç хăй ертсе пыракан халăхран ютшăнни. Чăваш Республикинче çак ютшăну халĕ куç кĕретех. Хальхи тÿре-шаран «тĕп ĕçĕ» хăйсен хутшăнăвĕсене татса парасси тейĕн: кам çÿлерех? Кам аслăрах: Президент-и е Патшалăх Канашĕ-и? Анчах çак ыйтусем иккĕмĕшле кăна шутланма тивĕç, чи малтан мăнтарăн халăхăмăрăн шухăш-кăмăлне, хуйхи-суйхине, унăн нушине шута илсе ĕçлемелле. Чăваш аталанăвĕн тĕллевĕсене палăртма тăрăшакан юхăмăн уйрăм çыннисем каланисене, çав шутра Чăваш наци конгресĕн йышăнăвĕсене те, хăлхана чиксен пăсмĕ.

Тĕрĕссипе каласан, суя иллюзипе ЧНК мар, ытларах хальхи тÿре-шара пурăнать. Çакна, çавна турăмăр теççĕ, халăх (ниме) реформине тăватпăр тесе шантараççĕ, анчах темшĕн çав халăх реформа пирки илтмен те, çав нимене хутшăнмасăр тăрса юлнă: Федераци шайĕнчи влаç чечен халăхне хирĕç вăрçă пуçласа янă, кунти «ĕçлĕ» патшалăх çыннисем суверенитет сăмаха калама хăракаласа пур пĕр «сепаратизм» пирки сÿпĕлтетеççĕ, суя шантарусем тата «пылак» ĕмĕтсем халăх хушшине сараççĕ.

Çапах та эпир ЧНКн Аслă Пухăвне хатĕрленетпĕр. Çак тĕллевпе эпир Кĕçĕн Канаш йышне çĕнетес терĕмĕр. Хăшĕ-пĕри ун пирки массăллă информаци хатĕрĕсем урлă пĕлтерме васканă. Ку ыйту татăлманха, ăна сÿтсе явса, çак ыйтăва тĕплĕн пăхса тухса Мăн Канаш хăйĕн ларăвĕнче татса парать, çакă унăн тивĕçĕ.

Кĕçĕн Канашăн, паллах, витĕмлĕрех, хастартарах ĕçлесе каймалла. Хăшĕ-пĕри çулталăк, икĕ çул шарламасăр ларать, кайран ăна такам çыртса илнĕ пек шăв-шав кăларма тытăнать, ЧНК япăх ĕçлет тесе кăшкăрашать, хăй кăкăрне çапса çÿрет. Ăс-хакăл шайĕнче, килĕшÿ тупса пĕр-пĕрипе ăмăртма пулать – вара чăваш ĕçĕмĕр те малалла каясса шанăç пулĕ.

**– Чăваш наци конгресĕ 1992 çулхи юпа уйăхĕнче пулса иртнĕ хыççăнах ăна «Советская Чувашия» хаçатра икĕ уйăха яхăн вирлĕ кăшларĕç – çав юхăм тапхăрăн-тапхăрăн халĕ те хăй шăлне кăтартать-ха (сăмахран, Чечня ыйтăвĕ тавра пыракан тавлашура каллех ЧНК позицине сивлеççĕ). Юрĕ, ку пысăк ăнлавсем – патриотизм, национализм тата шовинизм (фашизм, расизм сĕмĕ таранах) тавра пыракан дискусси, тавра курăмсен тупăшăвĕ тейĕпĕр. Эпĕ кунта конкретлăрах ыйту хускатасшăн. Сăмахран, ЧНК çителĕксĕр ĕçленĕшĕн унăн президентне хăшĕсем 1993 çулхи кăрлачрах, эсĕ Гаагăна ТТХО (ОННН) ретне кĕме кайнă чухнех, айăплама пуçланăччĕ. Ун хыççăн кам ÿркенмест – пурте ЧНК президентне тапкаласа илме тăрăшаççĕ: «Станьял президент пулсан ЧНК лайăхрах ĕçлетчĕ», «Туркай пекки кирлĕччĕ» т.ыт.те. Чăнах та, эсĕ çынсене хистесе, йăлăнса, ÿкĕтлесе, хăратса, намăслантарса ĕçлеттерекен çын мар. Пирĕн халăха вара «саламатлă алă» кирлĕ пулас. Çавăнпа та ЧНК президентĕнчен тухас, чавсапа хирсех çÿлелле тапаланакан «çĕнĕ лидерсене» вырăн пушатса парас кăмăл çук-и?**

– ЧНК эсĕ асăннă пăтăрмахсене сирсе, ман шухăшпа, хăйĕн позицине çирĕп тытса, 1992 çулта палăртнă тĕллевсене чăнах та çивĕч кĕрешÿре пурнăçа кĕртме тăрăшрĕ. Сăмах май, ЧР Президенчĕ суйланнинче те ЧНК тÿпи çук мар. Шел, хăш-пĕр çынсен пархатарлă туйăмĕ чунĕнче çукрах.

ЧНК республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсемпе çыхăнусем тытассине те çĕнĕ шая çĕклеме пултарчĕ. Пĕрлĕх, аталану, чăмăртану халĕ пирĕншĕн йыхравсем кăна мар, кашни кун тумалли хура, çав вăхăтрах сăваплă ĕç. Паллах, ĕçлесе çитерейменни сахал мар. «Чăваш ĕçне» туса пыма пултаракан çĕнĕ ÿсĕм политика арени çине тухасса шаннăччĕ. Ку шанчăк тÿрре тухмарĕ пулас. Сайраланса пыратпăр. Уйрăмах Чăваш Республикине илес пулсан. Тулай чăвашĕсем хушшинче вара çĕнĕлле шухăшлакан, хастар чăвашсем сахал мар. Çакă питĕ хавхалантаракан пулăм.

Чăваш наци конгресĕ ячĕпе (унăн пĕлтерĕшĕ те, ячĕ те вышкайсăр аслă!) усă курас текенсем пур, хăйсен политика тата урăх йышши карьерине çапла майпа пуçласа ярасшăн. Вĕсене хÿтлĕх кирлĕ, хăйсем уйрăммăн вĕсем никам та мар. Ку, паллах, суя активлăх – малтан хăвăн ĕçÿпе, ăсупа, пĕлĕвÿпе çын, чăваш пулнине çирĕплет – кайран тапалан. Çын пулма, чăваш пулма питĕ йывăр, анчах ку – тĕрĕс çул. Эпĕ хамăн вырăншăн çунмастăп. Ваттисен сăмахĕсемпе кăна шăппăн хуравлатăп: «Çитменнине çитерĕр, ытлашшине каçарăр!»

Илле ИВАНОВ калаçнă.  
*«Хыпар», 16.03.1995, 52№.*

## «ПИРĔНТЕН ĔÇ КĔТЕÇÇĔ. ХĂЮЛĂХ КĔТЕÇÇĔ»

*Мĕнле кăна сăнарлă, тарăн ăслă ваттисен сăмахĕсем çук-ши чăваш халăхĕн. Ăна-кăна чухласах кайман ахаль çынна хăшĕ-пĕри пĕрне-пĕри хирĕçленĕ пек те туйăнма пултарать: «Васкакан вакка сикнĕ», «Кая юлсан каю шăтать». Ăнланса пĕтер халăх ăсне: ытлашши васкама юраманни çинчен асăрхаттарнă хушăрах вăл кая юлни те инкек патне çитерме пултарассине систерет. Çапах та тупсăмĕ, ман шутпа, кăткăсах мар, тăван халăхăмăр мĕн калас тени яр уççăн палăрса тăрать: кирек епле ĕçе те, вăл ăнăçлă пултăр тесен, вăхăтра пуçăнса вăхăтра вĕçлемелле, кашни япалан Турă панă саманчĕ, хăйĕн мехелĕ пур.*

Çакна асра тытрĕ пулмалла **каçалхи пуш уйăхĕн 17-мĕшĕнче Шупашкарта иртнĕ Чăваш наци конгресĕн Мăн Канаш ларăвĕ.** Вăл йыхрав хучĕ çинче палăртнă пек ирхи 10 сехетре мар, 11 çитесси 15 минутра хăйĕн ĕçне пикенчĕ: чăваш Турри унччене, пирĕн халăх мăчаварĕсене систермесĕрех, çак саманта картса хунă пулмалла. Чăваш наци музейне вăхăтра çитнĕ ЧНК Мăн Канаш членĕсем уттисем пухăнасса кĕтнĕ майăн (çулĕ пит инçе-çке, республика тулашĕнчен

те, правительствăран та çын сахал мар килмелле) ахаль тăмарĕç, музей ĕçченĕсем хатĕрленĕ çĕнĕ выставкăсемпе паллашрĕç. Вĕсене уйрăмах «Чăваш наци юхăмĕ: çулпуçсем, тĕпчевсем, фактсем» курав килĕшни сисĕнчĕ, ăна лару залĕнчех йĕркеленĕрен çеç мар-тăр.

Мăн Канаш ларăвне ЧНК президенчĕ **А.П. Хусанкай** уçрĕ, кун йĕркипе паллаштарчĕ. **М.И. Скворцов** профессор, Мускавран ятарласа килнĕ **Г.Н. Волков** академик, ЧНК Кĕçĕн Канаш членĕ **В.В. Туркай**, Вĕрентӳ институчĕн проректорĕ **В.Н. Пушкин**, «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ **А.П. Леонтьев** ларура пăхса тухма палăртнă тĕп ыйтусен шутне чăваш аталанăвĕшĕн çеç мар, Раççей Федерацийĕшĕн те пĕлтерĕшлĕ ытти ыйтусене кĕртме сĕнчĕç.

Малтанах А.П. Хусанкай хăйĕн кĕске сăмахне каларĕ. Чăваш автономине туса хума йышăннăранпа кĕçех 75 çул çитет, çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕсенче çакна анлăн паллă тумаллах. Çавна май кăçалхи çĕртме уйăхĕн 22–23-мĕшĕсенче Акатуйпа пĕрле чăваш халăхĕн Аслă Пухăвне ирттермелле. Тăван халăхăмăрăн кун-çулне, хамăрăн несĕлĕмĕрсене те манмалла мар: çак вăхăталла Атăлçи Пăлхар–чăваш патшалăхĕ 1100 çул тултарнине паллă туса чăн-чăн Уяв ирттермелле. Пичетпе тата массăллă информацин ытти хатĕрĕсемпе анлăн усă курса чăваша хăйĕн тăван халăхĕн кун-çулĕпе тĕплĕнрех те витĕмлĕрех паллаштармалла. (Каярахпа Мăн Канаш ларăвĕ çӳлерех асăннă ĕçсене тивĕçлĕн пурнăçлама ятарлă йĕркелӳ комитечĕ суйласа çирĕплетрĕ). Кунсăр пуçне Атнер Петрович ЧНК Кĕçĕн Канашĕн йышне çĕнетмелли пирки те каларĕ.

Çак шухăш Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ **В.П. Станьял** каланинче те палăрчĕ:

– ЧНК йĕркелес шухăш çуралнă чух ăна Халăх Хуралĕ ятлă тăвасшăнччĕ. «Кама мĕнрен хуралламалла?» – терĕç ун чухне. Халĕ курăнсах тăрать; халăхсен хăйсене хуралламалла, хăйсен политика, экономика, культура, чĕлхе, этеплĕх еткерне. Иртнĕ виçĕ çул ЧНК шухăшĕ халăха кирлĕ, килĕшӳллĕ, вăхăтлă пулнине кăтартса пачĕ. Ĕçлекен халăх ЧНК çине çĕнĕлле, пысăкрах шанчăкпа пăхать. Вăл хура халăха хӳтĕлесе татăклă утăмсем тăвасса кĕтет. **Чăваш наци конгресĕ пуринчен малтан тулай чăвашĕсем валли тунă организаци. Анчах Конгресс йышăнăвне ЧР Президенчĕпе Правительство шута хумарĕç: ятарласа тулай халăхпа ĕçлекен пай тăвас вырăнне çав ĕçе Культура министерствине хушса пачĕç, мĕн пур ĕçе концертпа банкет шайне антарса лартрĕç. Конгресс ыйтнине пачах шута илменни влаç аппарачĕ халăха хирĕç кĕрешĕве тухнине пĕлтерет.** Кĕрешӳ çулĕ çине тухсан ЧНК Халăх Фрончĕн çулĕпе каять. Малашне Чăваш Республикин влаçĕпе килĕшӳ пулмасть пулсан, Раççей масштабĕпе килĕшӳсем тăвасси пирки шухăшламалла, тĕнче шайĕнчи виçепе пĕтĕм чăваш çыннисен ячĕпе калаçассине сарса ямалла. Пĕрремĕш вырăна укçа-тенкĕ тата власть ыйтăвне кăларма тивет. Конгресăн регионсенчи, районсенчи, хутлăхсенчи тытăмĕ йĕркеленсе çитеймерĕ.

Хальлĕхе вăл ленчешке. Уставри унăн тытăмне çирĕплетсе хăвармалла, ĕçлеттерсе ямалла. ЧНК çыннисем партисенче, администрацисенче, халăх хушшинче пулмасăр организаци вăя кĕреймĕ. Пирĕнтен ĕç кĕтеççĕ. Хăюлăх кĕтеççĕ. ЧНК Кĕçĕн Канашĕнче, вырăнти пайсенче, çыхăну ĕçĕнче çирĕп дисциплина пулмасăр пысăк ĕç тăвасси çинчен ĕмĕтленесси çеç юлать. Кĕçĕн Канашăн харкам ертӳçĕ, яваплă çын пулмалла.

**ЧНК Мăн Канаш ларăвĕ Кĕçĕн Канаш йышне çĕнетрĕ: В.П. Иванова, Н.В. Пыркина, В.П. Мидукова, В.А. Андреева пысăк тав сăмахĕ каласа хайсен йышĕнчен кăларчĕ, РФ тата ЧР тава тивĕçлĕ художникне В.П. Петрова (Праски Виттине), ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне, «Хыпар» редакторне А.П. Леонтьева, ЧАП ертӳçине Н.Е. Лукианова, «Нарс» фирма директорне Ю.А. Тарасова хайсен йышне кĕртрĕ. В.В. Туркая ЧНК вице-президентне суйларĕç. Чăваш наци конгресĕн тин çеç суйланнă вице-президенчĕ ЧНК Фондне йĕркелесе яни пирки каланă май ЧНКн «укçаллă» малашлăх пуласса шанма май паракан çул-йĕр тупнине тĕрлĕ документсемпе çирĕплетрĕ.**

Кăнтăрлахи апат хыççăн Мăн Канаш ларăвĕ малалла ĕçлерĕ. Унта хускатнă тĕп ыйтусенчен пĕри – Чăваш Республикин Конституци проекчĕ. ЧАП ертӳçи **Н.Е. Лукианов** сăмах илчĕ:

– Паян республикăра политика системин реформи пырать. Конституци йышăнасси – чи пĕлтерĕшлĕ пулăм. Нацин тĕп шухăшне палăртмалли документ пулмалла вăл. Республикăн Конституци проектне хатĕрлекен комиссине 1990 çулта йĕркеленĕ. Анчах та унăн ĕçĕ-хĕлĕ тивĕçтерсе каймасть. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен комиссие официаллă майпа Президент структурисĕр пуçне ЧАПпа ЧНК, ЧР Патшалăх Канашĕ, Раççейри коммунистсен партийĕн ЧР организацийĕ хайсен проекчĕсене тăратнă. Анчах массăллă информаци хатĕрĕсенче пичетленсе тухнă проект – Президент сĕнни. Унта ытти обществăлла ушкăнсемпе организацисен шухăшĕсене шута илмен. Тĕрĕссипе вăл пирĕн республикăра «çуралман», Мускаври пĕр-пĕр тĕпчев институтĕнче пулас. ЧАП, ЧНК ертӳçисем ЧР Конституцийĕн проектне хатĕрлес тĕлĕшпе çулталăк ытла ĕçлерĕç. Проекта темиçе хут та улăштарса якатма тиврĕ. Юлашкинчен эпĕ тата ЧНК президенчĕ А.П. Хусанкай Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров патĕнче пултăмăр. Хамăр сĕннĕ проектри кашни статья пирки Президентпа канашланă, кирлĕ çĕрте хушнă-улăштарнă. Çаксене пурне те шута илме шантарчĕ. Анчах хаçатсенче пичетленнĕ проектра пирĕн пĕр шухăш та çук.

Чăваш халăх писателĕ **Хветĕр Уяр** ЧНКпа ЧАП проектне кун çути кăтартассипе кăсăкланчĕ. «Чăваш Республикин Конституци проектне таçта Мускавра мар, хамăрăн чăваш ывăлĕсем хатĕрлесе çитерни эпир пиççе çитнине пĕлтерет, – терĕ вăл. – Çавăнпа та, пирĕн шухăш харама ан кайтăр тесен, ытти проектсене пичетлесе кăларма ыйтасси пирки документ йышăнмалла. Нихăшĕн те ытларах право пулмалла мар».

Çак шухăшсене ырласа тата ытти сĕнӳсемпе **И.О. Герасимов**, **А.П. Леонтьев, Н.И. Егоров, В.П. Станьял, А.П. Хусанкай, В.П. Петров (Праски Витти), В.В. Воробьев (Валери Туркай)** тата ыттисем тухса каларĕç.

ЧНК Кĕçĕн Канашĕн членĕ **А.П. Леонтьев** суверенлă Чечен Республикине хирĕç пуçарнă вăрçа чарса лартас тĕлĕшпе Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен Ассамблейине вăраха ямасăр ĕçлеттерме пуçламаллине палăртрĕ.

ЧНК вице-президенчĕ **В.П. Станьял** Удмурт Республикинче ĕçлесе пурăнакан В.И. Ванюшев çыравçă-ăсчаха, Валери Туркай Украинăри Остер хулинчи вăтам шкул директорне Н.Ф. Переща, чăваш культурине аталантарас тата пропагандăлас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçленине шута илсе, «ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят парасси пирки сĕнӳсем тăратрĕç. ЧНК Мăн Канашĕн членĕсем çакна ырласа йышăнчĕç.

Р. ПРОКОПЬЕВА, Н. СМИРНОВА.
*«Хыпар», 22.03.1995, 57№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН МĂН КАНАШĔН ЙЫШĂНĂВĔСЕМ

**[Чăваш Республикин законĕ]**
**Чăваш наци конгресĕн статусĕ çинчен**

*Проект*

**1 ст.** Чăваш наци конгресĕ чăваш халăхĕ суйланă Аслă пуху пулса тăрать.

**2 ст.** Чăваш наци конгресĕ Чăваш Республикипе Раççей Федерацийĕн патшалăх влаçĕпе управленийĕн аслă органĕсем умĕнче чăваш халăхĕн тĕп интересĕсене палăртать тата хӳтĕлет. Унăн ЧР Патшалăх Канашĕнче саккунсем кăларас тĕлĕшпе пуçару прави пур.

**3 ст.** ЧНКн тулли прависем вăйра тăракан саккунсене хирĕçлемен, суйлав çинчен калакан положенипе килĕшӳллĕн делегатсен демократилле майпа ирттернĕ суйлавĕн иккĕçĕ çинче йĕркеленеççĕ.

**4 ст.** ЧНК тата унăн ĕç тăвакан органĕсем Пĕтĕм тĕнчери правăн халăх йышăннă виçисем, Чăваш Республикипе Раççей Федерацийĕн вăйри саккунĕсем, Конституцийĕсем кăтартнă пек ĕçлеççĕ.

**5 ст.** ЧНКна Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ тата вырăнти ĕç тăвакан влаç органĕсем укçа-тенкĕпе пулăшса тăраççĕ.

**6 ст.** ЧНК хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕнче общество пĕрлешĕвĕсем çинчен калакан вăйри саккунсем кăтартнă пек ĕçлет.

**7 ст.** ЧНК ĕçĕ-хĕлĕ чăваш мар национальноçсен саккунлă прависемпе интересĕсене хĕсмест.

**Чăваш халăхĕн чапла уявĕсем çинчен**

Чăваш халăхĕн пурнăçĕнче кăçал калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ пулăмсем пулса иртмелле. Вĕсем: Атăлçи Пăлхар-Чăваш патшалăхĕ – 1100 çул тата Чăваш автономийĕ 75 çул тултарни.

Эпир, XX ĕмĕр вĕçĕнче пурăнакан чăвашсем, тăван халăхăмăрăн вăрăм та тертлĕ истори кун-çулне асран ямастпăр, аслă несĕлĕмĕрсен паттăрлăхĕпе тÿсĕмлĕхĕ пире паян Чăваш ĕçĕшĕн вăй-хала шеллемесĕр тăрăшма хавхалантараççĕ.

1920 çулхи çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕсенче Чăваш автономине йĕркелени те Чăваш патшалăхлăхне аталантарас ĕçĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ çĕнĕ утăм пулнă.

Çавăнпа ЧНК Мăн Канашĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 1995 çулхи çĕртме уйăхĕнче Атăлçи Пăлхар–чăваш патшалăхĕ 1100 çул тултарнине тата Чăваш автономийĕ 75 çул тултарнине анлăн паллă тума йышăннине ырлать.

Атăлçи Пăлхар–чăваш патшалăхĕн историйĕпе халăха тĕплĕнрех паллаштарма кирлине асра тытса, ЧНК Мăн Канашĕ чăваш ăсчахĕсене ку темăпа ятарлă хайлавсем ытларах çырма, массăллă информаци хатĕрĕсенче Атăлçи Пăлхар–чăваш патшалăхĕн кун-çулне çутатма сĕнет.

ЧНК Мăн Канашĕ вăраха ямасăр пысăк тиражпа «АТĂЛÇИ ПĂЛХАР–ЧĂВАШ ПАТШАЛĂХĔ» брошюра пичетлесе кăларма, ăна халăхра тÿлевсĕр салатса пама кирлине палăртать, асăннă брошюрăна кун çути кăтартас ĕçе чăваш предпринимателĕсем хастар хутшăнасса шанать.

ЧНК Мăн Канашĕ «Атăлçи Пăлхар – Чăваш патшалăхĕ» брошюрăна хатĕрлеме ЧНК Мăн Канашĕн членне, филологи ăслăлăхĕн докторне Н.И. Егоров профессора çирĕплетет.

ЧНК Мăн Канашĕ пĕтĕм чăваш çыннисене Атăлçи Пăлхар–чăваш патшалăхĕ – 1100 çул, Чăваш автономийĕ 75 çул тултарнине чаплăн уявлама чĕнсе калать.

**Чăваш наци конгресĕн Фончĕ çинчен**

**1.** «Чăваш наци конгресĕн фончĕ» акционерсен хупă обществине вăраха ямасăр йĕркелесе регистрацилеме тата ĕçе пикентерме кирлине палăртас.

**2.** ЧНК президенчĕ Чăваш наци конгресĕн штаб-хваттерĕпе Чăваш наци конгресĕн Фончĕн офисĕпе хуçалăх службисем валли Шупашкарти К. Иванов урамĕнчи 9-мĕш çурта (Çамрăксен Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ керменне) уйăрса пама ыйтнине ырлас, Чăваш Республикин влаç органĕсенчен ку ыйтăва çитес вăхăтрах татса пама ыйтас.

**3.** ЧНК Кĕçĕн Канашĕ, ЧНК уставĕпе килĕшÿллĕн, Юрий Алексеевич ТАРАСОВА Чăваш наци конгресĕн Фончĕн ĕç тăвакан директорĕ пулма шаннине шута илсе, Ю.А. ТАРАСОВА ЧНК Кĕçĕн Канашĕн йышне кĕртес.

**Чăваш наци конгресĕн массăллă информаци хатĕрĕсем çинчен**

Пĕтĕм Раççей Федерацийĕнчи тата чăвашсем йышлăн пурăнакан вырăнсенчи наци политики пирки, Чăваш наци юхăмĕ çинчен информаци çителĕксĕр пулнине шута илсе, ЧНК тĕллевĕсемпе позицине халăх хушшинче анлăн сарма кирлине тĕпе хурса, ЧНК Мăн Канашĕ çапла йышăнать:

**1.** Чăваш наци конгресĕн «АТАЛАНУ» хаçатне йĕркелес, хаçат редакторĕн тивĕçĕсене малтанхи вăхăтра туса пымă ЧНК вице-президентне В.В. ВОРОБЬЕВ–ТУРКАЯ хушас.

**2.** Шупашкарта, ЧНК çумĕнче, УК-хумсем çинче ĕçлекен радиостанци йĕркелес, Чăваш Республикин Министрсен Кабинетĕнчен çак радиостанцие йĕркелемешкĕн финанс-техника пулăшăвĕ ыйтас. Çак ĕçшĕн яваплă çын пулма ЧНК Кĕçĕн Канашĕн членне Ю.А. ТАРАСОВА çирĕплетес.

**Чăваш Республикин Президентне Н.В. Федорова Уçă çыру**

Хисеплĕ Николай Васильевич! Эсир Хăвăр Чăваш Республикин Президенчĕн тивĕçĕсене официаллă майпа пурнăçласа пыма пуçланă ятпа иртнернĕ чаплă уяври сăмахăртах «я буду бороться с нагнетанием национальной истерии в республике» тенĕччĕ. Инаугурацийĕр хыççăн та çак шухăша Эсир çынсен умĕнче темиçе хутчен те каларăр. Кăçалхи пуш уйăхĕн варринче Раççейри радио Эсир журналистсене панă интервьюпа халăха паллаштарчĕ (ăна çийĕнчех Чăвашрадио та эфира кăларчĕ). «Я буду подавлять в корректной форме националистов», – тетĕр Эсир, уйрăммăн илсен, çÿлерех асăннă интервьюра.

Çĕр чăмăрĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пуçтарăнса суйланă Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕ, хăйсене наци ыйтăвĕ уйрăмах кăсăклантарнине тĕпе хурса, Сиртен çак ыйтусене хуравлама ыйтать:

**1**. Мĕн вăл – национализм? Тăван халăхне ырă сунакан çынна, уншăн чунне парса ĕçлекен çынна «националист» теме пулать-и?

**2.** Чăваш Республикинче национализмпа националистсем пур-и? Пур пулсан – камсем вĕсем?

**3.** Цивилизациллĕ тĕнчере пĕтĕм этемлĕх йышăннă йĕрке пур. Çав йĕркепе килĕшÿллĕн (ăна Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ йышăннă) Çĕр чăмăрĕ çинчи кашни халăх хăй тĕллĕнлĕх (самоопределени) правипе усă курма пултарать. Ку вăл кирек хăш халăх та политика, экономика тата культура тĕлĕшпе ирĕклĕн аталанма пултарнине пĕлтерет.

Эсир пĕтĕм тĕнче шута хурахан, хисеплекен çак право нормине йышăнатăр-и? Е Сире чăваш халăхĕн çак правăпа усă курса аталанма тивĕçĕ çук пек туйăнать-и?

Сиртен татăклă та уçăмлă хурав кĕтсе –<br>
Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕ.<br>
*«Хыпар», 28.03.1995, 62№.*

# КОНСТИТУЦИЯ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

*Проект*

*Публикуется в соответствии с рекомендацией Конституционной комиссии от 13 февраля 1995 года Разработан Комитетом по культуре, образованию, науке, межнациональным отношениям, информационной политике и связи Государственного Совета и Малым Советом Чувашского национального конгресса*

Мы, народ Чувашской Республики, соединенный общей судьбой на своей земле, уважая права и свободы человека и гражданина, руководствуясь Декларацией о государственном суверенитете Чувашской Республики, сознавая ответственность за судьбу своей Родины перед нынешним и будущим поколениями, исходя из общепризнанных принципов равноправия и самоопределения народов, возрождая суверенную государственность чувашей, заявляя о решимости создать демократическое правовое государство, принимаем в лице своих полномочных представителей настоящую Конституцию Чувашской Республики.

**РАЗДЕЛ ПЕРВЫЙ**

**Глава I. ОСНОВЫ КОНСТИТУЦИОННОГО СТРОЯ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ**

**Статья 1**

**1.** Чувашская Республика - суверенное демократическое государство с республиканской формой правления, выражающее волю и интересы всего народа республики, строящего правовое гражданское общество.

**2.** Чувашская Республика обладает высшей властью на своей территории, ей принадлежит исключительное право на владение, пользование и распоряжение природными ресурсами, национальным богатством и национальным доходом, самостоятельно определять государственное устройство и форму правления, осуществлять внутреннюю и внешнюю политику государства.

**3.** Чувашская Республика независима в осуществлении своей внешней политики.

4.Суверенитет Чувашской Республики распространяется на всю её территорию, которая неприкосновенна и не может быть изменена без согласия более половины её граждан, установленного путем референдума.

**5.** Чувашская Республика самостоятельно определяет свое административно-территориальное устройство.

**Статья 2**

**1.** Носителем суверенитета и единственным источником государственной власти в Чувашской Республике является её народ. Народ осуществляет свою власть непосредственно путем свободных выборов, референдума, всенародного голосования, а также через органы государственной власти и органы местного самоуправления.

**2.** Государственная власть в Чувашской Республике осуществляется в соответствии с Конституцией Чувашской Республики и принятыми на её основе законами.

Никто не может присваивать власть в Чувашской Республике, захват власти и присвоение властных полномочий преследуются по закону.

**3.** Конституция Чувашской Республики имеет высшую юридическую силу на всей территории республики. Законы и иные нормативные акты не должны противоречить Конституции Чувашской Республики. Законы Чувашской Республики подлежат официальному опубликованию, неопубликованные законы не применяются.

Законы Чувашской Республики вступают в силу после их официального опубликования.

**Статья 3**

**1.** Гражданство Чувашской Республики приобретается и прекращается в соответствии с Законом о гражданстве, оно является единственным и равным, независимо от оснований приобретения.

**2.** Каждый гражданин Чувашской Республики обладает на её территории всеми правами и свободами и несет равные обязанности, предусмотренные Конституцией Чувашской Республики.

**3.** Отношения гражданина и государства строятся на приоритете прав человека - высшей социальной ценности. В своих отношениях гражданин и государство взаимно ответственны.

**4.** Чувашская Республика гарантирует равноправие граждан во всех областях политической, экономической, социальной и культурной жизни.

**5**. Государственным языком Чувашской Республики на всей её территории является чувашский, а русский язык является языком межнационального общения. В местах компактного проживания коренного иноязычного населения официальным языком наряду с государственным может быть и родной язык граждан данной национальности.

**Статья 4**

**1.** Государственная власть в Чувашской Республике осуществляется на принципах её разделения на законодательную, исполнительную и судебную.

**2.** Законодательная, исполнительная и судебная власти в Чувашской Республике самостоятельны.

**3.** Государственную власть в Чувашской Республике осуществляют Государственный Совет Чувашской Республики, Президент Чувашской Республики, Кабинет Министров Чувашской Республики, суды Чувашской Республики.

Органы государственной власти, органы местного самоуправления, должностные лица, граждане и их объединения обязаны соблюдать Конституцию Чувашской Республики и законы Чувашской Республики.

**Статья 5**

**1.** В Чувашской Республике признается и гарантируется местное самоуправление. Местное самоуправление в пределах своих полномочий самостоятельно.

**2.** Выборные органы самоуправления действуют самостоятельно в рамках закона и волеизъявления (народа) граждан, вмешательство в законную деятельность органов самоуправления не допускается.

**3.** Органы самоуправления могут наделяться отдельными государственными полномочиями с передачей необходимых для этого материальных и финансовых средств. Осуществление переданных полномочий контролируется соответствующими государственными органами.

**4.** Главы местного самоуправления избираются населением соответствующей административно-территориальной единицы Чувашской Республики. Выборные главы местного самоуправления осуществляют свои полномочия на срок 2 года и не могут быть освобождены на основании законов и решения суда.

**Статья 6**

**1.** В Чувашской Республике признается идеологическое многообразие. Никакая идеология не может быть утверждена в качестве обязательной и государственной.

**2.** Граждане Чувашской Республики вправе образовывать и участвовать в работе политических партий, массовых движений и других общественных Объединений, в Чувашской Республике признается политическое многообразие и многопартийность.

**3.** Запрещается создание и деятельность общественных объединений, движений и партий, цели и действия которых направлены на насильственное изменение основ конституционного строя и нарушения целостности Чувашской Республики, подрыв её безопасности, разжигание социальной, расовой, национальной и религиозной розни.

**4.** Общественные объединения, партии и движения официально регистрируются и равны перед законом.

**Статья 7**

**1.** Органы государства, общественные объединения, политические партии, массовые движения, трудовые коллективы и отдельные граждане Чувашской Республики могут учреждать средства массовой информации. Порядок учреждения средств массовой информации, их права, обязанности и ответственность устанавливаются законом.

**2.** Средства массовой информации свободны от цензуры. Не допускается монополизация средств массовой информации.

**Статья 8**

**1.** Социальная и экономическая политика Чувашской Республики направлена на создание условий, обеспечивающих достойную жизнь и свободное развитие человека.

**2.** В Чувашской Республике охраняются труд и здоровье людей, государство определяет и обеспечивает прожиточный минимум и минимальный размер заработной платы, устанавливает пенсии и пособия, обеспечивающие нормальную жизнь каждой семьи и способные поддержать материнство, детство, инвалидов и пожилых людей, развивать систему служб, гарантирующих социальную защиту всех слоев населения.

**Статья 9**

**1.** В Чувашской Республике признаются и обеспечиваются равной защитой все формы собственности.

**2.** Собственность неприкосновенна. Принудительное отчуждение имущества в общественных интересах может производиться лишь на основе закона Чувашской Республики и при условии полной компенсации.

**3.** Право собственности не может осуществляться в ущерб общественным интересам. Ограничение права собственности устанавливается только законом Чувашской Республики.

**4.** Правом собственности на землю могут пользоваться исключительно граждане Чувашской Республики.

**Статья 10**

**1.** Земля, её недра, водные и другие природные ресурсы, растительный и животный мир на территории Чувашской Республики являются собственностью народа. Они не могут использоваться в ущерб его интересам и интересам людей, там проживающих.

**2.** Все природные ресурсы подлежат охране и рациональному использованию.

**3.** Земля, недра и другие приходные ресурсы могут находиться в частной, государственной или иной формах собственности.

**4.** За нарушение природоохранного законодательства, а также законов о землепользовании виновные физические и юридические лица ответственны перед законом.

**Статья 11**

**1.** Экономика Чувашской Республики функционирует на основе принципов рыночного хозяйствования. Государство не вмешивается в хозяйственную деятельность предприятий и организаций, административное ограничение деятельности экономически самостоятельных предприятий не допускается.

**2.** Запрещается монополистическая деятельность, направленная на ограничение или устранение конкуренции.

**3.** Государство регулирует развитие экономики посредством реализации программ экономического и социального развития, проведения налоговой, кредитной и инвестиционной политики.

**Статья 12**

1. Общепризнанные принципы и нормы международного права и международные договоры Чувашской Республики являются составной частью её правовой системы. Если международным договором Чувашской Республики установлены иные правила, чем предусмотренные законом, то применяются правила международного договора.

**Статья 13**

**1.** Положения настоящего раздела Конституции Чувашской Республики составляют основы конституционного строя Чувашской Республики и не могут быть изменены иначе как в порядке, установленном настоящей Конституцией.

**2.** Никакие другие положения настоящей Конституции не могут противоречить основам конституционного строя Чувашской Республики.

**Статья 14**

1. Отношения Чувашской Республики и Российской Федерации определяются Договором об основах межгосударственных отношений Российской Федерации и Чувашской Республики, другими двусторонними договорами и соглашениями, в которых предусматриваются вопросы, передаваемые в ведение Российской Федерации. Законы Российской Федерации, принятые по вопросам, переданным Чувашской Республикой в ведение Российской Федерации, обязательны на территории Чувашской Республики.

**РАЗДЕЛ ВТОРОЙ**
**ОСНОВНЫЕ ПРАВА. СВОБОДЫ И ОБЯЗАННОСТИ ЧЕЛОВЕКА И ГРАЖДАНИНА**
**Глава II. ОБЩИЕ ПОЛОЖЕНИЯ**

**Статья 15**

**1.** В Чувашской Республике признаются и гарантируются права и свободы человека и гражданина согласно общепризнанным принципам и нормам международного права и в соответствии с настоящей Конституцией.

**2.** Основные права и свободы человека не отчуждаемы и принадлежат каждому от рождения.

**3.** Осуществление прав и свобод человека и гражданина не должно нарушать права и свободы других лиц.

**4.** Запрещается использование прав и свобод для насильственного изменения конституционного строя Чувашской Республики, разжиганий расовой, национальной, социальной, классовой, религиозной ненависти, пропаганды насилия и войны.

**5.** Граждане Чувашской Республики обладают всей полнотой личных, политических, социально-экономических и культурных прав и свобод, предусмотренных настоящей Конституцией.

**Статья 16**

**1.** Права и свободы человека и гражданина являются непосредственно действующими. Они определяют смысл, содержание и применение законов, деятель-

ность законодательной и исполнительной власти, местного самоуправления и обеспечиваются правосудием.

**Статья 17**

**1.** Все равны перед законом и судом.

Государство гарантирует равенство прав и свобод человека и гражданина независимо от пола, расы, национальности, языка и происхождения, имущественного и должностного положения, места жительства, отношения к религии, убеждений, принадлежности к общественным объединениям, а также других обстоятельств. Запрещаются любые формы ограничения прав граждан по признакам социальной, расовой, национальной, языковой или религиозной принадлежности.

**2.** Мужчины и женщины имеют равные права и свободы и равные возможности для их реализации.

**Статья 18**

**1.** Перечисление в Конституции Чувашской Республики основных прав и свобод не должно толковаться как отрицание или умаление других общепризнанных прав и свобод человека и гражданина.

**2.** В Чувашской Республике запрещается издание законов, отменяющих или умаляющих права и свободы человека и гражданина.

Права и свободы гражданина и человека могут быть ограничены законом только в той мере, в какой это необходимо в целях защиты основ конституционного строя, нравственности, здоровья, прав и законных интересов других лиц, обеспечения обороны, экономической и экологической безопасности государства.

**Глава III. ГРАЖДАНСТВО**

**Статья 19**

**1.** Чувашская Республика имеет свое гражданство. Гражданами Чувашской Республики являются лица, приобретшие гражданство в соответствии с Законом о гражданстве Чувашской Республики.

**2.** Основания, порядок приобретения и прекращения гражданства Чувашской Республики, а также другие вопросы, связанные с гражданством, определяются указанным законом.

**3.** Гражданин Чувашской Республики одновременно может являться гражданином Российской Федерации, иметь двойное (тройное) гражданство.

**Статья 20**

**1.** Гражданин Чувашской Республики может иметь также гражданство другого государства в соответствии с законом Чувашской Республики или международным договором Чувашской Республики.

**2.** Наличие у гражданина Чувашской Республики иного гражданства не умаляет его прав и свобод и не освобождает от обязанностей, вытекающих из гражданства Чувашской Республики.

**3.** Проживание гражданина Чувашской Республики за пределами республики не прекращает его гражданства.

**Статья 21**

**1.** Право убежища в Чувашской Республике иностранным гражданам и лицам без гражданства предоставляется в соответствии с нормами международного права.

**2.** Иностранным лицам и лицам без гражданства гарантируются предусмотренные законом права и свободы. Они имеют право на обращение в суд и иные государственные органы для защиты их нарушенных прав.

**3.** Иностранные лица и лица без гражданства обязаны уважать Конституцию и законы Чувашской Республики.

**Статья 22**

**1.** Граждане Чувашской Республики вправе определять и указывать национальную принадлежность. Никто не может быть принужден к определению и указанию своей национальной принадлежности.

**2.** Граждане Чувашской Республики имеют право на свободный выбор языка общения, на пользование, обучение и воспитание на родном языке.

**3.** Гражданам гарантируется пользование родным языком.

**Статья 23**

**1.** Чувашская Республика признает и гарантирует государственный статус чувашского языка, равные права на сохранение и развитие языков всех национальных групп, проживающих на её территории, создает возможности для их свободного развития.

**2.** Правовой статус языков определяется законом Чувашской Республики.

**Глава IV. ПРАВА И СВОБОДЫ ЧЕЛОВЕКА И ГРАЖДАНИНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ**

**Статья 24**

**1.** Каждый имеет право на жизнь. Никто не может быть произвольно лишен жизни. Государство защищает жизнь человека, его здоровье, личную свободу и безопасность.

**2.** Смертная казнь, впредь до её отмены, может применяться в качестве исключительной меры наказания только за особо тяжкие преступления против жизни и по приговору суда с участием присяжных заседателей.

**Статья 25**

**1.** Достоинство каждого человека охраняется государством. Ничто не может быть основанием для его умаления.

**2.** Никто не должен подвергаться пыткам, насилию, другому жестокому или унижающему человеческое достоинство обращению или наказанию. Никто не может быть без добровольного согласия подвергнут медицинским, научным или другим опытам.

**Статья 26**

**1.** Каждый имеет право на свободу и личную неприкосновенность. Арест, заключение под стражу и содержание под стражей допускается только по судебному решению. До судебного решения лицо не может быть подвергнуто задержанию на срок более 48 часов. Законность задержания проверяется в судебном порядке. Лицо, лишенное свободы, имеет право на гуманное обращение.

**2.** В Чувашской Республике каждому гарантируется право на защиту.

**Статья 27**

**1.** Каждый имеет право на неприкосновенность частной жизни, личную и семейную тайну, защиту чести и доброго имени.

**2.** Каждый имеет право на тайну переписки, телефонных переговоров, почтовых, телеграфных и иных сообщений. Ограничение этого права допускается только на основании закона и судебного решения.

**Статья 28**

**1.** Распространение, использование, сбор и хранение информации о частной жизни лица без согласия не допускается.

**2.** Органы государственной власти и органы местного самоуправления, их должностные лица обязаны обеспечить гражданам Чувашской Республики возможности ознакомления с документами и материалами; непосредственно затрагивающими их права и свободы.

**Статьи 29**

**1.** Жилище неприкосновенно. Никто не вправе проникать в жилище против воли проживающих в нем лиц иначе как на основании судебного решения.

**2.** Обыск допускается на основании решения суда, в случаях, не терпящих отлагательств, возможен иной, установленный законом порядок производства обыска, предусматривающий обязательную последующую проверку судом законности обыска.

**Статья 30**

**1.** Граждане Чувашской Республики имеют право свободного передвижения, выбора места пребывания и жительства в пределах Чувашской Республики.

**2.** Каждый может свободно выезжать за пределы Чувашской Республики и беспрепятственно возвращаться в нее. Ограничение этих прав допускается только на основе закона.

**Статья 31**

**1.** Каждому гарантируется свобода совести и вероисповедания, включая право исповедовать индивидуально или совместно с другими любую религию или не исповедовать никакой, свободно выбирать, иметь и распространять религиозные и иные убеждения и действовать в соответствии с ними.

**2.** Возбуждение вражды, ненависти и национальной розни в связи с религиозными верованиями запрещается.

**Статья 32**

**1.** Каждому гарантируется свобода мысли и слова. Не допускается пропаганда или агитация, возбуждающая социальную, расовую, национальную или религиозную ненависть и вражду.

Никто не может быть принужден к выражению своих мнений и убеждений или отказу от них.

**2.** Каждый имеет право свободно искать, получать, передавать, производить и распространять информацию любым законным способом. Перечень сведений, составляющих государственную тайну, определяется законом.

**Статья 33**

**1**. Каждый имеет право на объединение, включая право создавать профессиональные союзы для защиты своих интересов. Свобода деятельности общественных объединений гарантируется.

**2.** Никто не может быть принужден к вступлению в какое-либо объединение или пребыванию в нем.

**3.** Права, свободы и достоинство лиц, составляющих оппозиционное меньшинство в представительных органах власти, гарантируются законом.

**4.** Политические партии, профессиональные союзы, массовые движения и другие общественные объединения могут быть распущены на основе судебного решения, если их деятельность противоречит Конституции Чувашской Республики.

### Статья 34

**1.** Граждане Чувашской Республики имеют право собираться мирно, без оружия, проводить собрания, митинги и демонстрации, шествия и пикетирование.

Разрешение на проведение таких мероприятий в органах государственной власти дается лишь в случаях, специально предусмотренных законом.

### Статья 35

**1.** Граждане Чувашской Республики имеют право обращаться лично, а также направлять индивидуальные и коллективные обращения в государственные органы и органы местного самоуправления, которые в пределах своей компетенции обязаны принимать по ним решения.

### Статья 36

**1.** Граждане Чувашской Республики имеют право участвовать в управлении делами государства как непосредственно, так и через своих представителей.

**2.** Граждане Чувашской Республики имеют право избирать и быть избранными в органы государственной власти и органы местного самоуправления, а также участвовать в референдуме или во всенародном голосовании.

**3.** Не имеют права избирать и быть избранными граждане, признанные судом недееспособными, также содержащиеся в местах лишения свободы по вступившему в законную силу приговору суда.

**4.** В выборах Президента Чувашской Республики, депутатов Государственного Совета Чувашской Республики и в референдуме Чувашской Республики вправе участвовать граждане Чувашской Республики, находящиеся за её пределами.

**5.** Граждане Чувашской Республики имеют право участвовать в отправлении правосудия.

### Статья 37

**1.** В Чувашской Республике признается и гарантируется право частной, коллективной, государственной, муниципальной, общественной и совместной собственности.

**2.** Каждый имеет право распоряжаться, пользоваться и владеть собственным имуществом как единолично, так и совместно с другими лицами.

Никто не может быть лишен своего имущества иначе как по решению суда. Принудительное отчуждение имущества для государственных нужд возможно лишь при условии равноценного возмещения.

**3.** Право наследования гарантируется законом.

### Статья 38

**1.** Граждане Чувашской Республики имеют право на свободное использование своих способностей и имущества для предпринимательской или иной не запрещенной законом экономической деятельности.

Не допускается экономическая деятельность, направленная на монополизацию и недобросовестную конкуренцию.

**2.** На территории Чувашской Республики допускается предпринимательская деятельность иностранных граждан и организаций, лиц без гражданства в соответствии с законодательством Чувашской Республики.

### Статья 39

**1.** Чувашская Республика защищает права потребителей, поддерживает деятельность обществ в защиту этих прав и иные формы их охраны.

Потребитель имеет право на возмещение ущерба, причиненного ему производителями товаров, торговыми, сервисными и иными организациями, оказывающими услуги населению.

### Статья 40

**1.** Труд свободен. Каждый имеет право свободно распоряжаться своими способностями к труду, выбирать род деятельности и профессию.

Принудительный труд запрещен, кроме как по судебному решению.

**2.** Каждый имеет право на труд в условиях, отвечающих требованиям безопасности и гигиены, на вознаграждение за труд без какой бы то ни было дискриминации и не ниже размера прожиточного уровня, а также право на защиту от безработицы.

**3.** Чувашская Республика содействует полной занятости населения, гарантирует выплату пособий по безработице не ниже прожиточного уровня.

Признается право на индивидуальные коллективные трудовые споры с использованием законов Чувашской Республики, иных способов их разрешения, включая право на забастовку.

### Статья 41

**1.** Каждый имеет право на отдых. Работающему по трудовому договору или контракту гарантируются установленные законом Чувашской Республики продолжительность рабочего времени, выходные и праздничные дни, оплачиваемый ежегодный отпуск, сокращенный рабочий день для ряда профессий и производств.

### Статья 42

**1.** Семья, материнство, отцовство, детство и старость находятся под защитой Чувашской Республики.

**2.** Брак основывается на добровольном согласии и равноправии супругов.

**3.** Забота о детях, их воспитание и содержание - равное право и обязанность родителей.

Дети пользуются равной правовой и социальной защитой вне зависимости от происхождения и гражданского состояния родителей. Чувашская Республика обеспечивает содержание в нормальных жилищно-бытовых условиях, воспитание и образование детей-сирот и детей, лишенных родительской опеки, независимо от того, содержатся они в детских учреждениях либо под опекунством у приемных родителей.

**4.** Совершеннолетние трудоспособные дети обязаны заботиться о своих нетрудоспособных родителях.

### Статья 43

**1.** Каждому гарантируется социальное обеспечение по возрасту, в случае болезни, инвалидности, потери кормильца, для воспитания детей и в иных случаях, установленных законом.

**2.** Государственные пенсии и социальные пособия устанавливаются законом не ниже прожиточного минимума.

**3.** В Чувашской Республике поощряется добровольное социальное страхование, создание дополнительных форм социального обеспечения и благотворительности.

### Статья 44

1. Каждый имеет право на благоприятную окружающую среду, достоверную информацию о её состоянии и на возмещение ущерба, причиненного его здоровью или имуществу экологическим правонарушением.

### Статья 45

**1.** Каждый имеет право на жилище. Никто не может быть произвольно лишен жилища.

**2.** Чувашская Республика поощряет жилищное строительство, создает условия для реализации права на жилище.

Малоимущим, иным указанным в законе гражданам, нуждающимся в жилище, оно предоставляется бесплатно или за доступную плату из государственных, муниципальных и других жилищных фондов в соответствии с установленными законом нормами.

### Статья 46

**1.** Каждый имеет право на охрану здоровья и медицинскую помощь. Медицинская помощь в государственных и муниципальных учреждениях здравоохранения оказывается гражданам бесплатно за счет средств соответствующего бюджета, страховых взносов и других поступлений.

В Чувашской Республике финансируются республиканские программы охраны и укрепления здоровья населения, принимаются меры по развитию государственной, муниципальной, частной систем здравоохранения, поощряется деятельность, способствующая укреплению здоровья человека, развитию физической культуры и спорта, экологическому и санитарно-эпидемиологическому благополучию.

### Статья 47

**1.** Каждый имеет право на образование. Гарантируется общедоступность и бесплатность дошкольного, внешкольного, общего и начального профессионального образования в государственных или муниципальных образовательных учреждениях и на предприятиях.

Патша е Президент халăх асне сайра-хутра кăна ырăпа кĕрсе юлать. Вĕсем ĕмĕртен халăха пăркăчлакан влаçăн «чи аслă должноçри çыннисем» пулнă. Никама та пăхăнман. Вара хăйсене çĕр çинчи турă пек тытма, иртĕхме пуçланă. Проектра мĕнле гаранти пур пирĕн юратнă Президент курайми Президент пулса каясран? Нимĕнли те çук. Вăл ни халăх, ни Патшалăх Пухăвĕ умĕнче явап тытмасть, килĕшмесен – салатса ярать. Патшалăх Пухăвĕ «Министрсен Кабинетне шанманнине палăртнă пулсанах» парламента хăваласа яраççĕ. Министрсен Кабинетне Президент хăй йĕркелет, ăна хирĕç каламалли çук – çĕлĕке хул айне чик те тире сÿсен те «алай, алай» тесе тăр. Манăн шухăш çапла: пуянсене пÿрнеске-президент кирлĕ, хура халăха – ĕçлекен Президентпа парламент. Хальлĕхе, пурсăмăр та пăтранчăк авăрта тапкаланнă чухне, çыран патне алла-аллăн ишес пулать, пĕр-пĕрне аялалла туртас пулмасть. Президентăн Патшалăх Пухăвĕ умĕнче яваплă пулмалла.

**– Виталий Петрович, капла Президент кирлĕ те, кирлĕ мар та тенĕ пек пулса тухать. Татса калăр-ха...**

– Шкулта директор кирлĕ-и? Кирлĕ. Ĕлĕк попечитель те пулнă. Колхозра председатель кирлĕ-и? Кирлĕ. Ĕлĕк тата справка паракан ял Совечĕн председателĕ те пурччĕ. Республикăна ертÿçĕ кирлĕ-и? Кирлĕ. Çав ертÿçĕ Министрсен Кабинечĕн Председателĕ пулсан президент, вице-президент камсем? «Министрсен Кабинечĕн Председателĕн ĕçне туса пымаççĕ» (37-мĕш сыпăк) пулсан? Хăй тавра свита-команда суйлакан улпут-и? Çĕр-шывран çĕр-шыва çÿрекен республика хăйматлăхĕ-и? «Тĕнчери хутшăнусенче Чăваш Республики ячĕпе ĕçлет». Вара Патшалăх Пухăвĕ справка паракан секретарь вырăнĕнче-тĕр. Министрсен Кабинечĕн Председателĕ улпут именийĕн управляющийĕ пулать-и? Паллах, эпĕ ансатлатса калатăп, мĕншĕн тесен проектра «Президент – Патшалăх Пухăвĕ – Министрсен Кабинечĕ» палăрту хăрах енлĕн курăнать. Пире улпут мар, халăхпа тата халăхшăн ĕçлекен, унран хăраман, унăн хуйхи-суйхине пайлакан Президент кирлĕ.

Президент халăхран хăрани проектра самоуправлени çинчен каланă çĕрте курăнать. «Патшалăх влаçĕн органĕсем вырăнти самоуправлени органĕсене хăйсен уйрăм полномочийĕсене пама пултараççĕ» (63-мĕш сыпăк). Памасан та пултараççĕ, мĕншĕн тесен вырăнти самоуправлени органĕсем патшалăх влаçĕн органĕсен тытăмне кĕмеççĕ тата вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене Мускавпа Шупашкар саккунĕсем палăртнă шайра хăйсем татса параççĕ. Ах, тур, Максим Федоров сăвăç ĕмĕр çурă ĕлĕкрех «Мĕн тăвас пирĕн, телей, çи, чăваш, хÿра çăкăр» тени аса килчĕ...

Президент сĕннĕ Конституци проекчĕ пирки шухăша татса калас пулсан, ăна ку халлĕн йышăнма çук. Унта чăваш халăхĕн ăсĕ, чунĕ, ĕçĕхĕлĕпе малашлăхĕ курăнмаççĕ. Кĕскен каласан, халăх хăй пурнăçĕпе пурăнать, влаç пайлакансем – хăйсеннипе.

**– Юлашки ыйту: Конституцие мĕнле йышăнмалла?**

– Суйлавсем, референдумсем ултавăн пĕр меслечĕ кăна. Вĕсем нимĕн те памаççĕ. Ман шутпа, укçа-тенкĕ тăккаламалла мар. Хальхи вăхăтра тĕрĕс суйлав ирттерейменççĕ те. Патшалăх Канашĕ халăх кăмăлне шута илсе йышăнни те çителĕклĕ.

Е. ВЛАДИМИРОВА.

*«Хыпар», 18.04.1995, 77№.*

## АНИСЕМ АСЛĂ ТА – КĔЛТИСЕМ КĔСКЕ

*Чăваш наци конгресĕн пĕрремĕш пухăвĕ пулнăранпа виçĕ çул иртрĕ. Ун хыççăн пин-пин сăмах майлă та хирĕç çаврăнчĕ, халăх юхăмĕнчи ырă-усала Мăн Канаш çыннисем икĕ хут пухăнса, Кĕçĕн Канаш ушкăнĕ вара эрнесерен тенĕ пек сăвăрса сÿтсе яврĕ. Çĕртмен (июнĕн) 21–22-мĕшĕсенче Шупашкарта ЧНКн иккĕмĕш Аслă пухăвĕ иртет.*

Çурхи ĕçсем вĕçленнĕ хыççăн, çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче чăваш ялĕсенче, хутлăхĕсенче, районĕсенче хамăрăн ĕмĕртен пыракан

йӑла уявӗсем - кушар-вайӑсем, тапӑ-пухӑсем, сухатӳсемпе пултран пасарсем пулса иртеҫҫӗ, унтан вара делегатсемпе хӑнасем шурӑ Шупашкарӑмӑра Хура Халӑх Пухӑвне килӗҫ.

Наци конгресӗн Аслӑ Пуххи Чӑваш Тӳре-шара пӳлмекӗ (Министрсен Кабинечӗ) Чӑваш Республикин 75 тата Атӑлҫи Пӑлхар-чӑваш патшалӑхлӑхӗн 1100 ҫулӗсене уявлама ҫирӗплетнӗ программӑпа килӗшӳллӗ пухӑнать. Пуян программа тунӑ уяв эрни валли. Палӑртнинчен хӑшне-пӗрне кӑна асӑнса хӑварӑпӑр. Ҫав вӑхӑтра, ҫӗртмен 21–26-мӗшӗсенче, Шупашкарта Пӗтӗм Раҫҫейри хор ушкӑнӗсен «Юрлать тӑван ял-йышӑмӑр» ятлӑ фестивалӗ янрамалла (унта тӑватӑ пине яхӑн юрӑҫ хутшӑнать), Чӑваш гуманитари институтӗнче Атӑлпа Урал хутлӑхӗнчи тӗпчевҫӗсен ӑслӑлӑх конференцийӗ иртмелле, Хӗрлӗ лапӑра, театр умӗнче, К.В. Иванов палӑкне уҫаҫҫӗ, ҫӗртмен 23-мӗшӗсенче чаплӑ ларупа капӑр концерт пулать. Уяв эрни Республика акатуйӗпе вӗҫленет.

Ҫак йӗркесене вуласан хӑшӗ-хӑшӗ хуҫкаланса илет: «Тупнӑ савӑнмалли вӑхӑт, мӗнле пурӑнасси ҫинчен шутласчӗ». Эпӗ унпа килӗшетӗп.

Ҫавӑнпа аса илтеретӗп: алран кайми аки-сухине тунӑ хыҫҫӑн асран тухми атти-аннине итлесе пӑхмаллах пирӗн. Ӗмӗртен ҫапла пулнӑ. Ҫаплах пултӑрччӗ.

Чӑваш наци конгресӗн делегачӗсен пӗр пайӗ (Тутарстанри, Пушкӑртстанри, Самарпа Чӗмпӗрти, Саратовпа Оренбургри тӑвансем) ҫула май несӗлсен авалхи ҫӗрне – Пӑлхар, Сӑвар, Пӳлер хулаш вырӑнӗсене пуҫ тайма – Саккам хутлӑхне кӗрсе, ҫурхи чӳклемене хутшӑнаҫҫӗ. Ахӑртнех, ҫӗртме уйӑхӗн 20-мӗшӗнчи ир шевлине тӑхӑмсем аслашшӗсен ҫӗрӗ ҫинче кӗтсе илии сӑвапла пулӗ. Конгресс ыран уҫӑлас тенӗ чухне Шупашкарӑн 500 ҫуллӑх паркӗнче, Аслӑ Керем картинче, чӑвашсем хӑйсемпе пӗрле пин-пин ял-хуларан илсе килнӗ пӗрер ывӑҫ тӑпрана Пӗрлӗх Сӑрчӗ ҫине хурӗҫ. Чӗрӗлекен халӑхӑн ҫӗнӗ Улӑп тӑприйӗ, тен, ҫапла купаланма та пултарӗ. Пултӑрччӗ вӑл, асран тухми ӗмӗрсен Таса вырӑнӗ, шанчӑкӗ, палӑкӗ...

Мӗн ҫинчен калаҫӗҫ-ши ЧНК делегачӗсем, чӑваш конгрессменӗсем? Халӑх умне вак-тӗвек ыйтупа тухас мар тесен, ман шутпа, вӗсенчен кашниех малтан «Чӑваш наци конгресӗ: документсемпе материалсен пуххи» (1994) кӗнекери вырӑнсене аса илсе пуҫ тавра ҫавӑрмалла. Унта палӑртнинчен чылай япала пурнӑҫланчӗ, самай пысӑк утӑмсем пулчӗҫ. Ҫав-ҫавах ҫитес вӑхӑтра тума май ҫукки пайтах-ха. Сӑлтавӗсем ӑҫта? Мӗншӗн кӗтнӗ пек хапалӑх курӑнмасть? Ӗҫлемелли ӗҫсен ани анлӑ, туса ирттернӗ пулӑмсене пӑхсан – кӗлтисем кӗске, тӗшши сахал.

Виҫӗ ҫулхи тӗслӗхсене пӗтӗмлетсе, Программӑна чылаях ҫӗнетме вӑхӑт ҫитрӗ. Раҫҫейре, Чӑваш Республикинче, тулай хутлӑхра пурнӑҫ йӗрки тӗпрен улшӑнчӗ. Наци ыйтӑвӗн малтанхи тапхӑрта палӑртнӑ йӗрӗсем пурнӑҫланас ҫукки уҫҫӑнах курӑнма пуҫларӗ.

Раҫҫей текех никама та, нимле майпа та ирӗклӗх парас темӗ. Чӑвашпа мӑкшӑ «инородец» пулнӑ, паян та ҫав ҫӳп татки шутӗнчех юлчӗҫ. Алла пулсан, чӑваш халӑхӗн пӗрлӗхне чӑмӑртама ӗнерхи ӗмӗтсем каймаҫҫӗ.

ЧНК пуринчен малтан тулай чӑвашӗсене кирлӗ. Анчах Мӑн Канаш СНГ урлӑ мар, Донпа Урал урлӑ та ҫыхӑну кӗперӗ хываймарӗ. Правительство ЧНКна уйӑрса панӑ укҫа-тенкӗ, питӗ шел пулсан та, чӑваш чӑмӑртанӑвӗшӗн тӑккаланмарӗ. Ҫапла ан пултӑр тесен Устава ҫӗнетӳсем кӗртес пулать. Регионсемпе, аякри чӑвашсемпе тӳрӗ ҫыхӑну ыйтӑвӗсене мала кӑларма тивет. Вырӑнти администраципе, укҫа-тенкӗ, хуҫалӑх, пурлӑх тата йӑла-йӗрке тытӑмӗпе ҫыхӑнмасӑр малашне ЧНК ҫӗнӗ утӑм тӑваймасть. Чӳпӗк чӑмланипе ҫу тухмӗ. Хальлӗхе ҫил хӑвалакансем пӑтӑ ҫиеҫҫе, авӑн ҫапакансем выҫӑ лараҫҫӗ.

Тулай чӑвашӗсене пӗрлештермелли ҫулсем, ахӑртнех, нумай. Анчах ЧОКЦпа Халӑх Хуралне тунӑ чухнех ҫаврӑнма пуҫланӑ шухӑша пӑрахаймастӑп. Ку шухӑш - сыпӑнтарнӑ савӑтсен саккунӗпе пурӑнасси. Тулайри чӑваш ялӗсене хамӑр республикӑри районсемпе, тӑван ялӗсемпе тӳррӗн ҫыхӑнтараса вӗсем хушшинче суту-илӳпе, культура ӗҫӗпе пӗр-пӗрне хутшӑнтаракан йӗрке тумаллах. Тулай чӑвашра тулӑх ҫӗрсем парлак выртаҫҫӗ, пирӗн Траксемпе Хирлепсенче мунча лартма лаптӑк ҫитмест. Мӗншӗн ҫав мунчасене Пишпӳлекри Чиекассинче е Слакпуҫ ҫумӗнчи Кайраклӑра лартас мар? Мунча лартсан милӗк те, савӑчӗ та тупӑнать. Эппин, ҫапла каласшӑн: кунти чӑвашпа унти тӑван ҫураҫса пурӑнма тытӑнсан шкул ҫӗкленӗ, кӗнеке-хаҫат пырӗ, йӑла-йӗрке ҫирӗпленӗ. Вара саманан саккӑрла ҫилӗ нимеллӗ чӑвашсене авса каяймӗ.

Тӑван шкулпа ҫирӗпленнӗ йӑла-йӗрке ҫинчен ахальтен каламастӑп. Шкулсемпе ача усравӑшӗсемсӗр халӑхӑн малашлӑхӗ пулмасть. Ун пирки пайтах калаҫрӑмӑр. Чӗмпӗрте, Самарта, Ӗпхӳре чӑваш шкулӗсемпе ӗҫлекен хастар меслетҫӗсем тупӑнчӗҫ. Шӗкӗр турра, ҫакӑ паянлӑха савӑнтарать. Анчах вӑл питех те ҫителӗксӗр. Патша саманинче Пӗтӗм чӑваш шкулӗсемшӗн тӑрӑшакан Н.И. Золотницкипе И.Я. Яковлев пек тӗрӗслевҫӗсем пулнӑ. Паян вӗсем пур-и? Е кирлӗ мар тесе шутлатпӑр? Чӑваш Республикин ку ыйтӑва татса пама хевте ҫитмест. Эппин, ЧНКн хӑй ҫине илмелле. Укҫи-тенкине ӑҫтан тупас? Вырӑнти облаҫсемпе республикӑсен тата Раҫҫей Федерацийӗн бюджетӗнчен. Укҫа ҫук теҫҫӗ? Чечняра а Таджикистанра тӑкма укҫа-тенкӗ пур-ҫке, халӑха усрама пус тупӑнмасть-им? Макӑрман ачана улпутсем сӗт мар, ҫыртӑк та памаҫҫӗ. Эппин, ыйтма вӑхӑт ҫитет. Халӑхӑн ҫирӗпленнӗ йӑлисем ҫинчен калӑттӑм. Ҫав йӑла пуртан чӑваш ялӗсем упранса юлнӑ. Ҫав йӑла пуртан халӑх арканман. Анчах юлашки вӑхӑтра куҫ умӗнчех ял моралӗ, ӗретлӗхӗ, тирпейлӗхӗ пӗтет. Куҫ умӗнчех яш-кӗрӗмӗн пӗр пысӑк йышӗ ҫапкаланчӑка тухса пырать. Вӑл йыш татах пысӑкланса тӳрленми чир пуҫланать. Хӑйне хӑй тасалайман шыв пекех, халӑх симӗсленсе пӑнтӑхма пуҫлать. Кил ваттисен ялта йӗрке тӑвасҫинчен ниепле те пӑрӑнма юрамасть. Тӑхӑмсем япӑх пулнишӗн никам та мар, хамӑр - аслисем, ваттисем айӑплӑ. Чӑннине йышӑнмах тивет: ӑслисам, хӑюллисем, пуҫаруллисем вӑрҫӑсенче, ГУЛАГра, килте мар ҫӗрсенче пӗтрӗҫ. Халӗ вӗсен вырӑнне май пур тарӑн тӑнлӑ-пуҫлӑ ҫынсемпе тултарас пулать.

Тӑванлӑх туйӑмӗ упранса юлнӑ ҫынсем пур, халӑх ӗҫӗнчен пӑрӑнмаҫҫӗ. Вӗсене ЧНК делегачӗсем хавхалантарни, ҫул пани нумаях пулмарӗ. Малтанхи пухура «ни ҫӑмӗ, ни шӑрчӗ» йышши конгрессменсем ытларах пулчӗҫ пулмалла. Иккӗмӗш пухура шанчӑклӑраххисене, халӑх ӗҫӗнче палӑрнисене курасчӗ.

Ӑрусен ҫыхӑнӑвӗ чылай хавшакланчӗ. Аслисем хӑвӑрт «кивелсе», яшшисем самантрах «ҫӗнелсе» кайрӗҫ. Вӑрҫӑ-харҫӑ асапӗ айӗнче ӳснӗ ашшӗ-амӑшӗ пӗлӳ шайӗпе мӑнукӗсене тӗкӗ параймасть. Сӑмах компьютерпа коммерци чӗлхисене пӗлменни-пӗлни ҫинчен мар. Аслӑ ӑру этнопедагогика, этнокультура никӗсне вӗҫертсе ячӗ. Ашшӗ-амӑшӗ шкулпа, шкулӗ ялпа ҫыхӑнма пӑрахрӗ. Ывӑлӗ-хӗрӗ мӗнле кӗнекесемпе вӗреннине пач пӗлмен ашшӗ-амӑшӗ – йӗркеренех. Чӑваш историйӗпе, культурипе, сӑмахлӑхӗпе шкулта вӗрентнине аслӑ ӑрурисем пурнӑҫра ҫирӗплетсе кӑтартайми пулса тӑчӗҫ. Ҫак ҫитменлӗхе пӗтерес тесе Чӑваш краевечӗсен союзӗпе пӗрле «Чӑваш халӑхӗн ӑс-хакӑл шкулне» йӗркелерӗмӗр. Унта чӑваш кун тӑрӑмӗн (календарӗн) паллӑ кунӗсене, уявӗсене, йӑлисене вӗрентме пуҫларӑмӑр. Вӗренӳ планӗсем, программисем йӗркеленчӗҫ. Хӑш-пӗр енчен вӗсем институтсемпе университетри шайран та иртеҫҫӗ. Анчах вӗсене хура халӑх патне мӗнле ҫитермелле? Ятарласа хаҫат е журнал ҫук. Радиопа телекурӑмра ун йышши шкул уҫас тесен – укҫа ыйтаҫҫӗ. Чӑвашра халӑх шкулне уҫмалӑх ҫӗрме пуян пур-и? Пулсан та – шкулне укҫа тӑкма мар, укҫа тупма – халӑхран сӑптӑрма – уҫӗччӗ. Эппин, патшалӑх политики урлӑ мӗн те пулин тапратма май килӗсӗнччӗ! Ут туртмасан урапа кусмасть тесе ахальтен каламаҫҫӗ.

Лашисене кӳлме те, кӳлнисене уттарма та пӗлмерӗмӗр курӑнать. Ҫавӑнпа чӑвашӑн вӗтӗ кӗлтеллӗ ҫӑрик-ҫарик урапи сарлака ана тӑрӑх аран-аран тайкаланать. Ҫармӑссемпе удмуртсем (ыттисем пирки каламӑпӑр) — тачӑ кӳршӗсем — ӑс-хакӑлпа пуҫарулӑх енчен пирӗнтен самаях иртсе кайрӗҫ. Шавӗ ҫук, пайти пур. «Вӗсене финн-угор пӗрлӗхӗ вӑй парать», — тейӗ хӑш-пӗр ертӳҫӗ. Паллах, ҫав пӗрлӗхре вӗсем хӑйсене чылай тӗреклӗрех те ӑслӑрах туяҫҫӗ. Чӑваш халӑхӗ те ҫара пуш хирте мар-ҫке. Пирӗн тӑван-хурӑнташ темӗн чухлех. Вӗсем пӑрахас ҫук. Анчах тӑван патне кайиччен малтан хамӑр пите тасарах ҫуса шӑласчӗ. Хамӑр ҫине вӗсен куҫӗпе пӑхса тинкересчӗ. Мӗн ӑмсанмалли пур? Халӑхӗ — сапаланчӑк. Мӗн ӗҫпе тӑранса пурӑнмаллине картса хуман. Пуҫне йӑтмасӑр тӑрӑшса аран-аран тӑранкалать те, ӑна пӗрех «дотаципе пурӑнатӑн» тесе хӑртаҫҫӗ. Чӑваш Республикин Президенчӗ чӑваш ҫулне палӑртма тӑрӑшрӗ-тӑрӑшрӗ, юлашкинчен ҫав ҫул, халӑх мӑшкӑлне, «чиркӳ ҫулӗ» пулах кайрӗ! Ҫут ҫанталӑкпа, тӗнчепе, ӗҫпе, ирӗкпе килӗштерсе пурӑнакан, тайма пуҫ айӗнче пӑхӑнман чунне упракан халӑха ҫӗкленӳ ҫулӗ кирлӗ. Вӑл ҫул хамӑртах пур. Ӑна ытахалех аякра шыраҫҫӗ.

...Хӗвеллӗ ҫуркунне тӑрать. Ҫанталӑк саккунӗ чӗрӗлӗхе, ирӗклӗхе йыхӑрать. Чӑвашӑн ҫӗрӗ хӗсӗк пулсан та тӗнчи аслӑ. Чӑвашлӑх хирне ырӑ вӑрлӑх акакансен Аслӑ пухӑвӗ умӗн хамӑрӑн шӑпа ҫинчен пурсӑмӑр та тепӗр хут лайӑх шухӑшласа пӑхар-ха. Шухӑшланипех тырӑ акӑнмасть пулсан та — шухӑшламасӑр та тӗлсӗр сапнӑ пӗрчӗрен тулли пучах тухманнине манар мар.

Виталий СТАНЬЯЛ,
Чӑваш наци конгресӗн вице-президенчӗ.
*«Хыпар», 4.05.1995, 87№.*

## ҪУК, ЧУХӐН МАР ЭПИР!

*Ака уйӑхӗн 28-мӗшӗсенче Шупашкарта, Чӑваш наци музейӗнче, чӑваш предпринимателӗсемпе банк ӗҫчен ӗсен пӗрремӗш ӗҫлӗ тӗл пулӑвӗ иртрӗ. Тӗл пулу кӑна мар, пысӑках мар съезд тенӗ пулӑттӑмччӗ эп ун пирки.*

Ара, ку таранчен чӑваш предпринимателӗсемпе банкирӗсем официаллӑ майпа пӗрле пуҫтарӑнманччӗ-ха. Совет Союзӗнче бизнес М. Горбачевӑн ҫӗн йӗркелӗвне пула ҫуралчӗ. Ҫӗн йӗркелӳччен предприниматель пулма хӑтланса пӑхнисене мӗн кӗтнине пурсӑмӑр та лайӑх пӗлетпӗр. Ак юлашки ҫулсенче чӑваш бизнесменӗсем те пӗрин хыҫҫӑн тепри хӑйсем ҫинчен пӗлтерме пуҫларӗҫ. Шупашкарта та пур вӗсем, Елчӗкре те, Тюменьре те, Мурманскра та... Чӑваш наци конгресӗн ҫак теветкеллӗ ӗҫре тар тӑкакан чӑвашсен шӑпипе кӑсӑкланмаллах ӗнтӗ.

Ҫавӑнпа та чӑваш предпринимателӗсемпе бизнес ӗҫченӗсен пӗрремӗш ӗҫлӗ тӗл пулӑвне темле урӑх организаци мар — Чӑваш наци конгресӗ йӗркелесе ирттернинчен, ман шутпа, ним тӗлӗнмелли те ҫук. Ҫитменнине пӗрле пухӑнса сӳтсе явмалли ыйтусем те питӗ нумай.

Тӗл пулура, предпринимательсемпе банкирсемсӗр пуҫне, Чӑваш Республикин Президенчӗн администрацийӗн ертӳҫине **А.В. Разумова** та, Чӑваш Республикин Патшалӑх пурлӑхне тытса тӑракан патшалӑх комитечӗн председательне **М.Г. Андронова** та, Чӑваш Республикин экономика министрне **И.Ю. Миронова** та, Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн пилӗк комитечӗн пуҫлӑхӗсене — **Б.М. Яковлева, В.А. Тихонова, В.А. Тимофеева, Г.Н. Архипова, Н.В. Селиванова** та курма пулчӗ. Ку ЧНК йӗркеленӗ тӗл пулу Чӑваш Республикин влаҫ органӗсене самаях кӑсӑклантарнине темрен те лайӑхрах ҫирӗплетет.

Тӗл пулӑва ЧНК вице-президенчӗ **В.В. Туркай** уҫрӗ. Вӑл залри сумлӑ та хисеплӗ халӑха саламларӗ, тӗл пулӑвӑн кун йӗрки ҫинчен пӗлтерчӗ, унтан Чӑваш наци конгресӗн президентне **А.П. Хусанкая** сӑмах пачӗ.

— Эпир кунта чӑваш предпринимательствин хӑйсене евӗр координаци центрне йӗркелес тӗллевпе пуҫтарӑннӑ, — терӗ **А.П. Хусанкай**. — Чӑваш Республикине аталантарас тесен пирӗн унӑн экономика никӗсне ҫирӗплетес пулать. Пире пӗр-пӗринпе ҫывӑхрах паллашни те пурнан пурнӑҫӑмӑрта пӗртте ытлашши пулас ҫук.

Тепӗр кӑткӑс тема — тулай чӑвашӗсемпе тытакан экономика ҫыхӑнӑвӗсене аталантарасси. Ахӑртнех, чӑвашсем йышлӑ пурӑнакан республикӑсемпе облаҫсенче Чӑваш Республикин культура тата сутуилӳ представительствисене уҫма вӑхӑт ҫитрӗ. Пирӗн республика Тутарстанпа тата Пушкӑртстанпа тунӑ килӗшӳсенче ҫакна палӑртса хӑварнӑччӗ. Шел, хальлӗхе ҫак пунктсем «ӗҫлемеҫҫӗ».

Конгресӑн пӗрремӗш форумне Америкӑра пурӑнакан чӑваш С. Падюков предприниматель килнӗччӗ. Унран эпир пуҫласа этемӗн экономика прависен, декларацийӗ ҫинчен илтрӗмӗр. Кирлех ҫакнашкал деклараци.

Предпринимательсен проблемисемпе ятарласа ӗҫлекен координаци органӗ кирлӗ. ЧР правительстви ҫумӗнче, паллах, ун пек орган йӗркеленӗ. Анчах ӑна ертсе пыракан ҫынсем питӗ субъективлӑскерсем пек туйӑнаҫҫӗ. Вӗсен, ахӑртнех, хӑйсен «команди» пур пулас. ЧР Правительствин предпринимательсене «хамӑрӑннисемпе» «юттисем» ҫине пайламалла мар.

— Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи Германипе Япони экономикисене ура ҫине тӑратма наци кӑмӑл-туйӑмӗ нумай пулӑшнӑ, — терӗ ЧР экономика министрӗ **И.Ю. Миронов**. — Чӑваш Ен экономикине аталантарас ӗҫре те ку фактор пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулма пултарать.

**М.Г. Андронов** хӑйӗн сӑмахне шӳтрен пуҫларӗ:

— Кунта паян Чӑваш Республикин Правительствин ларӑвӗ иртет тейӗн. Предпринимательсемпе правительствӑн пӗр-пӗрне ӑнланса ӗҫлемелле. Диаспора чӑвашӗсем ҫинчен те ытларах шухӑшламалла. Сахал калаҫса нумайрах ӗҫлесчӗ. Паянхи тӗл пулӑвӑн пӗлтерӗшӗ ҫав тери пысӑк. Чӑваш наци конгресӗн Фондне йӗркеленине те ҫав тери кирлӗ ӗҫ тесе шутлатӑп...

Трибуна ҫинче — Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн депутачӗ **А.Г. Аксаков**.

— Чӑваш наци конгресӗн республикӑмӑрти пӗлтерӗшӗ хальхинчен нумай пысӑкрах пулмалла, — терӗ Анатолий Геннадьевич. — Конгреса хӑйсене те пирӗн пулӑшса тӑмалла.

ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗ **Б.М. Яковлев** Конгресӑн Пӗрремӗш Аслӑ Пухӑвне еплерех ирттернине аса илчӗ, ҫак икӗ ҫул ҫурӑ хушшинче чӑвашсен кӑмӑл-туйӑмӗ улшӑннине палӑртрӗ, хӑй ертсе пыракан «АЯР-банк» ҫинчен калаҫа кӑтартрӗ.

— Республикӑри банксен шучӗ мӗн чухлӗ пысӑкрах, укҫа ҫавӑн чухлӗ нумайрах, — терӗ юлашкинчен оратор.

ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗ, «Приволжский» банка ертсе пыракансенчен пӗри **В.А. Тихонов** сӑмахне те тӗл пулӑва килнисем тимлӗн итлерӗҫ.

— Татсах калатӑп, — терӗ нумаях пулмасть ЧР Хӑрушсӑрлӑх министрӗ пулса ӗҫленӗ В.А. Тихонов генерал, — Чӑваш Енре национализм ҫук! Наци туйӑмӗпе республика экономикине аталантарнӑ чухне усӑ курмаллах. Тата пире халь экономикӑна объективлӑ анализ туни кирлӗ. Ман шутпа, пирӗн, чӑвашсен, виҫӗ тӗп «ҫулпа» утмалла. Пӗрремӗшӗ. Хӑмларан пысӑк тупӑш илме вӗренмелле. Иккӗмӗшӗ. Ҫӗр улми. Ҫӗр улмипе усӑ курма эпир хальлӗхе пӗлместпӗр-ха. Виҫҫӗмӗшӗ. Пирӗн республика географи тӗлӗшӗнчен ҫав тери ӑнӑҫлӑ тӑрӑхра вырнаҫнинчен тупӑш илме хӑнӑхмалла.

Елчӗкри «Эллина-Карбони» акционерсен обществин генеральнӑй директорӗ **И.В. Теплов**, яланхи пекех, хӑйӗн сӑмахне тӳррӗн те уҫӑмлӑн каларӗ:

– Конгресс кирлех пирӗн халӑха. Кунта эсир ҫӗр шӑпи пирки тавлашрӑр паян. Ман шутпа – ҫӗре сутмаллах! Ӑна арендӑна панинчен ҫеҫ усси пулас ҫук.

Тӗл пулура ҫавӑн пекех Комсомольскинчи ҫӑкӑр завочӗн директоре **И. Ильямаков**, «Термен» ассоциацин генеральнӑй директорӗ **В.Д. Тимофеев**, «Браво» организацин Шупашкарти представителӗ **А.И. Горюнов**, ЧНК вице-президенчӗсем **В.П. Станьял** тата **В.В. Туркай**, Чӑваш наци музейӗн директорӗ **Э.К. Бахмисов** сӑмах каларӗҫ.

Чӑваш предпринимателӗсемпе банк ӗҫченӗсен пӗрремӗш ӗҫлӗ тӗл пулӑвӗ Чӑваш наци конгресӗн Бизнес-клубне йӗркеленипе тата унӑн ертсе пыракан органне – Правленине – суйланипе вӗҫленчӗ.

Ҫакӑн йышши иккӗмӗш тӗл пулӑва Чӑваш наци конгресӗн 2-мӗш Аслӑ пухӑвӗ ӗҫленӗ вӑхӑтра, 1995 ҫулхи июнӗн 22-мӗшӗнче, Шупашкарта ирттерме палӑртнӑ.

В. ДОЛГОВ.
*«Аталану», 6.05.1995, 1№.*

# 1995, ҫӗртме, 21—22: II Аслӑ пуху



Чӑваш наци конгресӗн II Аслӑ пухӑвӗн делегачӗсемпе хӑнисем.1995.

## ЧӐВАШ НАЦИ КОНГРЕСӖН II АСЛӐ ПУХӐВӖ

## ЧӐВАШ НАЦИ КОНГРЕСӖН ИККӖМӖШ АСЛӐ ПУХӐВНЕ

Хисеплӗ делегатсем! Тӑванӑмӑрсем! Хӑнасем! Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗ пурсӑра та сире Чӑваш наци конгресӗн иккӗмӗш Аслӑ пухӑвӗ уҫӑлнӑ ятпа ӑшшӑн саламлать.

Чӑваш наци конгресӗ, виҫӗ ҫула яхӑн каялла ҫуралнӑскер, ҫак тапхӑрта сахал мар ырӑ ӗҫ туса ирттерчӗ. Тӗнчери мӗн пур чӑваша чӑмӑртас, чӑвашӑн авалтан килекен хӑйсене евӗр культурине упрас тата малалла аталантарас тӗлӗшпе чылай паха пуҫарусем турӗ. Вӑл республикӑри политикӑпа хуҫалӑх пурнӑҫӗн кӑткӑс ыйтӑвӗсене татса парас ӗҫе хастар хутшӑннине палӑртма кӑмӑллӑ. Раҫҫей Федерацине чӑн-чӑн федераци никӗсӗ ҫине куҫарасси, наци политикине йӗркелесси тата тӗрӗс тытса пырасси ҫинчен те Конгресс хӑйӗн шухӑш-кӑмӑлне уҫҫӑн пӗлтерчӗ, ҫак ӗҫе витӗм кӳчӗ. Вӑл тӗрлӗ нацисен прависене пӗр тан тӑвассишӗн, вӗсен хушшинчи туслӑ ҫыхӑнусене ҫирӗплетессишӗн, тӑнӑҫлӑхшӑн ӑнтӑлни — унӑн чи лайӑх енӗсенчен пӗри.

Чӑваш халӑхӗ, Чӑваш Республики умӗнче тӑракан ансат мар ыйтусем чылай. Анчах вӗсене мӗн пур ыр кӑмӑллӑ вӑйсене пӗрле пуҫтарса ӗҫлесен ҫеҫ ӑнӑҫлӑ татса пама май пулӗ. Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗ Чӑваш наци конгресӗн мал курӑмлӑ пуҫарӑвӗсене асӑрхасах тӑрӗ, халӑх пурнӑҫне лайӑхлатма май паракан шухӑш-тӗллевсене влаҫ органӗсемпе, общество организацийӗсемпе пӗрле килӗштерсе сӳтсе явса пурнӑҫа кӗртсе пыма тӑрӑшӗ.

Сире ӑнӑҫлӑ ӗҫлеме ырӑ сунатпӑр.

Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗ.
*«Хыпар», 21.06.1995, 120–121№.*

## ЧӐВАШ НАЦИ ИДЕЙИНЕ ҪӖНӖЛЛЕ ПАЛӐРТМА ВӐХӐТ ҪИТРӖ

*Те ҫаплах пулнӑ ӗнтӗ авалхи Пӑлхарта? Тен, йӑли-йӗркине, тӗпчетпӗр пулсан та, пит аван пӗлсех те ҫитерейместпӗр пулӗ-и? Ҫапах та несӗлӗмӗрсене сума суса, вӗсен умӗнче пуҫ тайса Чӑваш наци конгресӗн II Аслӑ пухӑвӗ уҫӑлас кун ирхине ирех тӗп хуламӑрти Шупашкар 500 ҫул тултарнӑ ятпа хисепленекен парка сӑваплӑ ҫӗрсен пӗрлӗх уявне – чӳк тума – халӑх йышлӑ тухрӗ.*

Ҫӗр каҫ ҫумӑр ҫуса кайнӑ хыҫҫӑн сывлӑш самай уҫӑ. Шӑрӑх ҫанталӑк хыҫҫӑн ӳсен-тӑраншӑн хавассӑн сывламалли самант. Ҫак шухӑшпа киленсе пынӑ май ирӗксӗрех тӑван халӑхӑмӑра та ҫав ҫумӑр хыҫҫӑнхи ешӗл курӑкпа танлаштарас килет. Хӑйӗн ӗмӗрӗнче ҫав чуна ҫунтаракан ҫанталӑкӗ самаях тӑнӑ, хутран-ситрен пушарӗ те алхаснӑ. Те тӗпӗпех кӑкласшӑн пулнӑ ӗнтӗ? «Ҫулнӑ» вырӑнта курӑкӗ тепӗр хут ҫав-ҫавах шӑтнӑ, шӑрӑх ҫанталӑка та тӳснӗ, пушарне те ҫӗнтернӗ. Акӑ ҫав халӑхӑн ывӑл-хӗрӗсем, вун-вун сӑлтава пула Раҫҫей тӑрӑх сапаланса кайнӑскерсем, хӑйсен мӑн аслашшӗсен йӑлипе чӳк-уява утаҫҫӗ. Эх, пӗлесчӗ кашнин шухӑш-кӑмӑлне? Тӗрлӗрен пулсан та, пурне те ҫыхӑнтараканни те пурах ӗнтӗ ҫак самантра – асӑну.

Акӑ ҫитес вӑхӑтра (тен, часах та пулмӗ) ҫак вырӑнта чӑваш тӗнӗн, йӑла-йӗркин Керемӗ ҫӗкленӗ. Халӗ вара несӗлӗмӗрсене асӑнса Юпа лартасшӑн. Авалхи Пӑлхар патшалӑхӗн сӑваплӑ ҫӗрӗнчен илсе килнӗ кӑмрӑкпа тӗтӗмлетнӗ лаптӑкра ун валли шӑтӑк алтнӑ. Тӑват кӗтеслӗ юман Юпана Чӑваш халӑх художникӗ **Праски Витти** авалхи ҫӗр-шыв, шывпа ту, чӗрӗлӗх, хӗвел паллисемпе илемлетнӗ. Юпана лартрӗҫ, **Микихвер** мамале кӗлӗ вулать:

– Эй, Пӗтӗм тӗнчене пӑхса упракан Турӑ! Эй, Ҫут ҫанталӑк, пире пӑхаканӗ, пире саваканӗ! Тӑван ҫӗр-шыв, Ҫӗр ашшӗ, Ҫӗр амӑшӗ! Авалхи асатте-асаннесем! Эпир паян ҫакӑнта хамӑрӑн чӑвашлӑха упрас тесе, тӑванӑмӑрсене пӗр тӗле пуҫтарас тесе сӑваплӑ ҫак Юпана лартас терӗмӗр. Ҫак ӗҫе тума пире ирӗк парӑр. Эй, авалхи манӑҫа тухнӑ асаттесем, ӑсчахсем, пӗлӗмҫӗсем, ӑрӑмҫӑсем, чӑвашсен тӗнне, йӑли-йӗркине тытса пыраканӗсем, пире пулӑшса пырӑр, пиллӗх парӑр.

Тӑпрана хӑпартса ҫитернӗ ӗнтӗ, халӑх «Алран кайми аки-сухи» юрра тӑсса ярать. Унтан Микихвер мамалене пулӑшакан **Юркомбек** эптер Юпа умне ҫӑкӑр-тӑвар, пыл, ҫу, тӑпӑрчӑ хурать. **Неҫҫе** эптер виҫӗм кун Пӑлхартан илсе килнӗ ҫӗре, шыва Юпа ҫывӑхне сапать.

Республика тулашӗнчен килинӗ ентешӗмӗрсем те хӑйсемпе пӗрле сӑваплӑ ҫӗр илсе килнӗ. Акӑ **П. Мульдияров** профессор (Мускав) Юпа умне икерчӗ хурать, Чӗмпӗртен килнӗ ентешӗмӗр ҫӑмарта хывать, **Н. Атряскин** (Анат Кама, Тутарстан) хӑйпе илсе килнӗ тӑпрана сапать. Ыттисем те авалхи йӑла-йӗркепе асатте-асаннесене тав сӑмахӗ калаҫҫӗ, малашнехи чӑвашлӑх ӗҫӗнче пулӑшса пыма пил ыйтаҫҫӗ.

Каллех **Микихвер** мамале сӑмах илет:

– Эй, пире пӑхакан Турӑ! Эпир паян ҫак ӗҫе – чӑваш палӑкне – хамӑра хамӑр ас тума, пӗрлештерме пулӑшакан Юпана лартрӑмӑр. Пире тӗнче чӑваш ячӗпе асӑнать. Пире тӗнче чӑваш ячӗпе хисеплет. Чӑваш ҫӗр ҫинчен ан ҫухалтӑр. Пирӗн ачасем, вӗсем хыҫҫӑнхи сыпӑксем чӑваш йӑлине тытса пыччӑр! Ҫапла пултӑр! Ҫак ӗҫ туни ырра пултӑр! Ҫапла пултӑр!

Ҫак сӑмахсем хыҫҫӑн чӑваш тумӗллӗ темиҫе хӗрарӑмпа арҫын халӑха пыл ҫине пуҫнӑ икерчӗпе, сӑрапа сӑйлать.

Сӑваллӑ ҫӗрсен пӗрлӗх Юпи ҫапла ҫӗкленчӗ, ҫитес ҫулсенче ҫакӑнта чӑваш йӑла-йӗркин Керемӗ пуласса шанас килет.

Чӳкрен Чӑваш патшалӑх филармонийӗн ҫуртне таврӑннӑ тӗле кунта та халӑх йышланнӑ. Чӑваш наци конгресӗн II Аслӑ пухӑвӗ уҫӑлас умӗн темиҫе минут маларах шӑпӑр сасси чӗрене ҫурасла, тунсӑхлӑн та мӑнаҫлӑн илтӗнсе каять. Таҫтан аякран-аякран – ҫав авалхи Пӑлхар тӑрӑхӗнченех килнӗн туйӑнать ҫав кӗвӗ.

ЧНК Аслӑ пухӑвӗн делегачӗсемпе хӑнасене регистрацилесси вӗҫленет, делегатсемпе хӑнасем зала вырнаҫаҫҫӗ. Президиумра – ЧНК Кӗҫӗн Канашӗн членӗсем, ЧР Президенчӗ **Н.В. Федоров**, Совет Союзӗн икӗ хут Геройӗ **А.Г. Николаев** космонавт-летчик, ЧР министрӗсем, хаклӑ хӑнасем.

Пухӑва ЧНК президенчӗ **А.П. Хусанкай** уҫать:

– Хаклӑ тӑванӑмӑрсем, хӑнасем! Паян пирӗн пысӑк уяв. Пӗтӗм чӑвашсене пӗрлештерекен Чӑваш наци конгресӗн иккӗмӗш Аслӑ пухӑвӗ уҫӑлмалла. Эпир ҫак пуху пуҫланас умӗн пӗтӗм ҫут тӗнчене тытса тӑракан Турӑран пехил ыйтрӑмӑр, ҫавӑнпа та вӑл ӑнӑҫлӑ пуласса шанас килет.

Унтан Аслӑ пухӑвӑн ӗҫ органӗсене – секретариат, шутлав, редакци, мандат комиссийӗсене – суйларӗҫ. Кун йӗркинчи ҫак ыйтусене – «Хамӑр Тӑван ҫӗр-шыва ҫӗнсе илмелле» (доклад тӑваканӗ – ЧНК президенчӗ А.П. Хусанкай); «Чӑваш диаспорин аталанӑвӗн ыйтӑвӗсем» (ҫумдоклад тӑваканӗ – ЧНК вице-президенчӗ В.П. Станьял); ЧНК Уставне улшӑнусемпе ҫӗнӗлӗхсем кӗртесси (ҫумдоклад тӑваканӗ – ЧНК вице-президенчӗ В.В. Туркай); мандат комиссийӗн доклачӗ; ревизи комиссийӗ пӗлтерни; Аслӑ пухӑвӑн органӗсене суйласси; ЧНК пичет органне ҫирӗплетесси; Тӗрӗк халӑхӗсен конгресне кайма делегатсем суйласси; ЧНК документчӗсене йышӑнасси – пӑхса тухса ҫирӗплетрӗҫ. Паллах, делегатсемпе хӑнасене сӑмах парассине те шута илнӗ.

Чӑваш наци конгресӗн президенчӗ **А.П. Хусанкай** хӑйӗн докладӗнче ҫак тӗп шухӑшсем ҫинче чарӑнса тӑчӗ: «…ЧНК I Аслӑ Пухӑвӗ пулнӑранпа икӗ ҫул та 8 уйӑх иртсе кайрӗ. Ҫак тапхӑрта, политика, культура пурнӑҫӗнче тӗрлӗ улшӑнусем пулчӗҫ. Раҫҫей тата Чӑваш Республикин шайӗпе илсен те. Паянхи лару-тӑрӑва илес пулсан, Раҫҫей шайӗнче те, ЧР шайӗнче те шухӑшлаттарать, Чӑваш наци конгресӗн вырӑнӗпе пӗлтерӗшӗ пирки ыйтӑва ҫӗнӗлле лартма ыйтать.

1993 ҫулхи раштав уйӑхӗнче иртнӗ суйлавсем тата кӑҫалхи федераци шайӗнчи Патшалӑх Думине депутатсем суйламалли тапхӑр ҫак чӑнлӑха ҫирӗплетсе параҫҫӗ. Чӑваш сасси, ытти халӑхсенни пекех, федераци шайӗнче илтӗнми пулать. Чӑн-чӑн демократи, федерализм тӗрлӗ халӑхсен пӗр танлӑхӗн принципӗсем хальхи Раҫҫей тӳре-шарине кирлӗ мар пулса тухать. ЧР илес пулсан, хунта та ҫӗнӗ влаҫ тытӑмӗсем, шел пулин те, чӑваш наци политики мӗн иккенне, унӑн пӗлтерӗшне ӑнкарса

илеймен-ха. Чăваш патшалăх тытăмĕ тата суверенитет ыйтăвĕ ЧНК ĕçĕнче яланах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. ЧР чăваш халăхĕн пĕртен пĕр наци патшалăх пĕрлешĕвĕ пулнă май, унăн суверенитетне пĕтĕм майсемпе çирĕплетсе пымалла. Чăн-чăн суверенитет принципĕсем ЧР тытăмĕнче ĕçлекен çынсен шухăшлавĕнче, ĕçĕнче, патшалăх органĕсем хатĕрлекен саккунсенче, экономика, экологи тата чĕлхепе культура программинче тĕп вырăн йышăнмалла. Чăваш наци идейине çĕнĕлле палăртма вăхăт çитрĕ. Кунта тĕп философипе политика, этикăпа илемлĕх категорийĕсем тухсан аван пулĕччĕ. Чăваш наци идеологийĕ пулмасан халăхĕ те пулмасть пулĕ. Ку – пĕр-пĕр парти идеологийĕ мар. Халăх пурнăçĕн шăнăрĕ, халăхăн кăмăлĕ, унăн чун ăнтăлăвĕ наци идеологийĕн никĕсне хывăнмалла. Тăван халăхăмăр аслă тĕнчере хăйĕн вырăнне тупмаллах».

Атнер Петрович çавăн пекех тĕрĕк тĕнчи, наци политики, Атăлпа Урал тăрăхĕнчи чăваш халăхĕ, Раççей тата чăваш ыйтăвĕсем пирки тарăн чарăнса тăчĕ. «Юлашки вăхăтра, – малалла тăсрĕ вăл хăйĕн докладне, – чăвашсем тĕрĕк тĕнчипе тĕрлĕ шайри çыхăнусем йĕркелеме пуçларĕç. ЧНК ырлать вĕсене. Тăванла тĕрĕк халăхĕсен ĕçнехĕлне, вĕсен аталану çул-йĕрне пирĕн те тишкермелле, пĕлмелле, вĕсемпе усă курмалла. Çак ăçпе, ман шутпа, Турци Республикипе ăслăлăхпа культура çыхăнăвĕсене аталантармалли анлă программа хатĕрлемелле. Чăваш наци конгресĕ, Тĕнчене тухайман халăхсен организацийĕн тулли праваллă членĕ пулнă май, пирĕн тĕрлĕ халăхсемпе, патшалăхсемпе çыхăну тытма майсем уçăлнă. Тĕнче правин йĕркисене вĕренмеллех, хамăр ирĕклĕхе тĕнче прави никĕсĕ çинче хӳтĕлемелле. Тӳррипе каласан, хальлĕхе пирĕн наци политики те çук-ха. Эпир хамăрăн наци патшалăх интересĕсене лартман, сӳтсе явман, çак чи кирлĕ ыйтăва çĕклемен тесен те йăнăш пулмĕ. ЧНКн патшалăх тытăмĕсемпе пĕрле çак ыйтăва тĕрлĕ енчен пăхса тухмалла. Кунта чĕлхе политики, халăха вĕрентес ĕç, наци культурин аталанăвĕ, чăвашсем йышлă пурăнакан регионсемпе экономика çыхăнăвĕсене йĕркелесси тата нумай-нумай ыйту кĕрет. Енчен те эпир чăваш наци интересĕсене палăртма тата вĕсене пурнăça кĕртме пултаратпăр тăк, чăваш халăхĕ чăмăртаннине, чăваш нацийĕ пулма пуçланине туйма пуçлăпăр. Вара тин ЧНК хăйĕн ятне тӳрре кăларĕ».

Делегатсемпе хăнасем ЧНК президенчĕн докладне ăша хывса итлерĕç. Ара, Атнер Петрович ЧНКна çеç мар, пĕтĕм халăхăмăра тӳрремĕнех пырса тивекен ыйтусене хускатрĕ.

Чăваш Республикин ертӳçи **Н.В. Федоров** сăмах илчĕ. Николай Васильевич ЧНК Аслă Пухăвне саламлама килнĕ. Алла пулсан та ырă, ăшă сăмахсемпе пĕрле пирĕн хальхи вăхăтра пурнăçламалли пысăк ыйтусене те хускатрĕ.

ЧНК вице-президенчĕн **В.П. Станьялăн** «Чăваш диаспорин аталанăвĕн ыйтăвĕсем» çум доклачĕ те ячĕшĕн калана сăмах мар. Докладчик халь хаççăн çине тăрса ĕçлемелли тĕллевсене уççăн палăртрĕ. Çав шутра: 1) тулай чăвашĕсене организаци енчен йĕркелесе çирĕплетесси; 2) Чăваш Республикинче тулай чăваш пĕрлĕхĕсен кулленхи ĕçлĕ çыхăнăвĕсене, çав çыхăнусен йĕрне-мелне çирĕплетсе çитермелле; 3) вата, вăй питти, яш-кĕрĕм чăваша тăван йăла-йĕрке, уяв-пуху урлă пĕрлештермелле; 4) вĕт-шакăр ача-пăчапа шкул ӳсĕмĕнчисене тăван чĕлхе, сăмах, юрă-ташăпа вăйă-кулă тĕнчи туса парасси; 5) сапаланчăк тулай чăвашĕсен инçет вырăнсенчи, ял-хуласенчи уйрăм çыннисене, çемйисене, ушкăнĕсене хăйсене çывăх вырăнсенчи паллăрах чăваш центрĕсемпе тата Шупашкарпа тӳррĕн çыхăнтарса тăрасси тата ытти те.

Докладчиксен сăмахĕсене итленĕ май çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума пулать: уçăмлă та татăклă ĕçсен тапхăрĕ çитрĕ. ЧР Президенчĕн Н.В. Федоровăн сăмахĕсемпе каласан, «шухăшламалли те, ĕçлемелли те, пĕр-пĕрне пулăшмалли те кунта кашниншĕн те, пуриншĕн те питĕ нумай».

Надежда СМИРНОВА.

## ВĂЙЛĂ ХАЛĂХ ПУЛМА, ÇĔНТЕРМЕ ВĔРЕНЕС ПУЛАТЬ. ЫРАШ ПĂТРИ ПУЛМАЛЛИ ÇЫНСЕМ МАР ЭПИР…

*Çĕртме, 21. Чăваш патшалăх филармонийĕн залĕ. Аслă Пухăвăн пĕрремĕш ĕç кунĕн каçхи ларăвĕ.*

Чăваш наци конгресĕн пĕрремеш ĕç кунĕн каçхи ларăвăн ĕçне, делегатсем тухса каланине пĕтĕмлетсе тишкернĕ хыççăн пуçа пĕр шухăш кĕрсе ларчĕ те ниепле те хăпма пĕлмерĕ: «Каллех, каллех макăратпăр, пулăшу ыйтатпăр, пĕр-пĕрне йăпататпăр...»

Çапла, Конгресăн пĕрремĕш Аслă пухăвĕ ĕçленĕренпе икĕ çул та сакăр уйăх ытла иртрĕ. 1992 çулхи юпа уйăхĕнче Чăваш наци конгресне Чăваш чĕрĕлевне, Чăваш наци юхăмне тытса йĕркелесе тăракан, чăваш çыннин, чăваш халăхĕн саккунлă прависене хӳтĕлекен тĕп вăй, тĕп вырăн пултăр тесе йĕркеленĕччĕ. Çак тивĕçе кăштах та пулсан пурнăçлама пултарчĕ-и-ха вăл?

«Çак вăхăтра республика пурнăçĕнче чылай улшăну пулса иртрĕ: ЧР Президентне суйларĕç, ЧР официаллă влаçĕсем ЧССР Аслă Совечĕ йышăннă Чăваш Республикин суверенитечĕ çинчен калакан Декларацие тата Чĕлхесем çинчен калакан Саккуна маннăçемĕн манса, пăрахăçланăçемĕн пăрахăçласа пычĕç... Чăваш вырăсланма пăрахмарĕ. ЧНКн тĕп тĕллевĕ чăваш халăхĕ вырăса (тен, тутара та?..) тухнипе кĕрешесси, çак юхăма чарса лартасси пулмалла. Хамăр тăрăшмасан пире айккинчен килсе пулăшмĕç. Правительство наци политики çине мĕнле пăхни асăннă Пухăва ирттерме ыйтнă 70 миллион тенкĕ вырăнне 15 миллион тенкĕ кăна уйăрса пани те кăтартать. Çав вăхăтрах кăмпаçăсемпе хăмлаçăсене кирлĕ пек пулăшма манмарĕç, – палăртрĕ ЧНК вице-президенчĕ **Валери Туркай**. – Эппин, хамăрăнах çине тăмалла. Чи пахи – Конгресăмăр ĕçлетĕрччĕ! Укçа-тенкĕ, уйрăм вырăн, хамăрăн телефон тавраşĕ çук пулин те.

Пуканесен театрĕнче параллеллĕ телефонпа ларатпăр. Асăннă Пуху, тĕрĕссипе каласан, чăвашлăха парăннă 6–7 çын чупса çӳремен пулсан иртмесен те пултарнă. Çавăнпа, темĕнле йывăр пулсан та, ЧНК штабхваттерĕнче пурнăç вĕресе тăтăрччĕ! ЧНК хăйĕнчен халăх мĕн кĕтнине тӳрре кăлартăрччĕ...»

Залра пуçтарăннă делегатсем, хăнасем çинчен мандат комиссийĕн председателĕ **А.И. Ефимов-Кибеч** пĕлтерчĕ. ЧНК 2-мĕш Аслă пухăвĕн ĕçне 489 делегат хутшанать. Çав шутра 40 çула çитейменнисем – 152 çын, 40-50 çулхисем – 108 çын, 50 çултан иртнисем – 208 çын. Пĕлӳ тĕлĕшĕнчен пăхсан, вăтам пĕлӳллисем – 99 çын, аслă пĕлӳллисем – 353, наука кандидачĕсем – 17, наука докторĕсем - 8. Специальность енĕпе пăхас пулсан, учительсем – 128, врачсем – 25, ял хуçалăх ĕçченĕсем – 42, наука çыннисем – 30, культурăпа искусство ĕçченĕсем – 64, ытти специалистсем – 80. Конгреса пурĕ 152 хăна хутшăнать: Чăваш Республикинчен – 100 çын, Самар облаçĕнчен – 14, Пушкăртстанран – 14, Тутарстанран – 7, Мускавран – 4, Азербайджанран – 2, Тюмень облаçĕнчен – 3, Чĕмпĕр облаçĕнчен – 4, Удмуртирен – 1, Эстонирен – 1, Чукоткăран – 1, Турцирен – 2. Делегатсем ăçтан мĕнле йышпа килсе çитнине те палăртрĕ мандат комиссийĕ: Тутарстанран – 26 делегат, Пушкăртстанран – 68, Самар тăрăхĕнчен – 23, Чĕмпĕр облаçĕнчен – 22, Мари Элтен – 2, Тюмень облаçĕнчен – 12, Пермь облаçĕнчен – 1, Украинăран – 1, Комирен – 1, Казахстанран – 2, Мускав хулинчен тата облаçĕнчен – 7, Удмуртирен – 2, Пенза облаçĕнчен – 2, Беларуçран – 1, Кемĕр облаçĕнчен – 1, Оренбург облаçĕнчен – 3, Ленинград облаçĕнчен – 1, Камчаткăран – 1, Хакасирен – 1, Мордовирен – 3, Чăваш Республикинчен – 322.

Куратăр: Раççейĕн кашни кĕтесĕнче тымар янă чăваш. Çавна май, паллах, кашнин хăйĕн асапĕ-нуши. Тĕслĕхрен, Камчаткăри Петропавловск хулинчи чăвашсен «Канаш» пĕрлĕхен ертӳçи **В.П. Ефремов** çалла пĕлтерчĕ: «Пирĕн патăмăрта чăваш çынни йышлă пурăннине çирĕплетсе çапла калаççĕ: урама виçĕ хутчен тухса шăхăрсан хĕрĕх чăваш пуçтарăнатех. Питĕ тунсăхлаççĕ, ентешĕсене курасшăн,

калаçасшăн, нумайăшĕ пурнăç вĕçнелле тăван енех таврăнасчĕ тет. Килме-кайма Камчаткăран 3 миллион тенке кайса ларать. Конгреса килме вырăнти администраци пулăшмарĕ. Пĕр-пĕччен килме тиврĕ. Камчаткăри чăваш ачисем чăвашла вĕренеймеççĕ. Кунти министерствăран чăваш кĕпе-тумтирĕ илме пулăшу ыйтрăм, пулăшаймастпăр терĕç. Чăвашсене канма кану çурчĕ уçасшăнччĕ, вăй çитерейĕпĕр-ши? Чунĕпе пурĕ пĕр Чăваш çĕр-шывĕнче пурăнакан чăвашсен хăйсене хăйсем хавхалантарса пурăнасси çеç юлать-ши вара? Ытти чух, укçа-тенкĕ пĕчĕкрех чух, кĕнеке таврашне туянма, канма, курма килсе çÿретчĕ Камчатка чăвашĕ Шупашкара, халĕ 3 миллион тÿлесе кам çÿрейĕ? Куçса килес шутлисем чылай. Тен, правительство, Президент хваттер енĕпе пулăшма пултарĕç?»

Хакасирен килнĕ чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенне **Н.В. Сорокинăна** та канăçсăрлантарать республика тулашĕнчи чăваш шăпи: «Виçĕ пине яхăн чăваш пурăнать Хакасире. Пурĕ те 2 чăваш ялĕ кăна. Тăваттăмĕш çул вĕсенче чăваш чĕлхине вĕрентеççĕ. Хакаси чăвашĕсем чăваш пулнăшăн намăсланмаççĕ, «эпир чăвашсем» тесе мухтанаççĕ. Артистсем, çыравçăсем пырса çÿремеççĕ пирĕн патăмăра. «70-мĕш çулсенче темле чăваш ансамблĕ килсе кайрĕ» тесе тунсăхлăн аса илеççĕ вара. Хамăр пухăнатпăр, ташлатпăр, юрăсем юрлатпăр-ха. Юррисем те ĕлĕкреххисем. Вĕрентÿ енĕпе илсен, чăваш чĕлхине иккĕн вĕрентетпĕр. Пĕлĕве ÿстерес шухăш пур, тен, вĕрентÿ институчĕ чĕнсе илме пултарĕ пире?»

Нумай делегат хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тухса каласа кăтартрĕ. Паллах, йывăрлăх тени кашни утăмрах тĕл пулать паян. «Ыйтусене, шухăшсене пĕччен-иккĕн татса пама çук. Пĕрлешмелле, вырăнти правительствăсенчен, ертÿçĕсенчен пулăшу ыйтмалла. Ертсе пыракан органсене суйланма тăрăшмалла чăвашăн. Вырăнти ыйтусене вырăнтах татса пама тăрăшмалла. Чăваш Республики пурне те пулăшма хал çитереес çук», – терĕç делегатсем. Çак шухăша çирĕплетсе Пушкăртстан делегацийĕ ячĕпе **А.А. Кондратьев** профессор, Пушкăртстанри Пишпÿлек район администрацийĕн ĕçченĕ **В.А. Иванова**, Чăваш наци ăслăлăхпа ÿнер академийĕн президенчĕ **Л.Н. Иванов**, Казахстан чăвашĕ **Н.А. Львов**, Тутарстанри **В.А. Дедушкин**, чăваш кăйкăрĕ **А.Г. Николаев** (сăмах май, ăна пушкăрт чăвашĕсем «эсир икĕ хут тĕнче рекордсменĕ пулнă, паян сире виççĕмĕш хут тĕнче рекордсменĕ тăватпăр тесе ятарласа алăпа тĕрлесе хатĕрленĕ пысăк кавир çине тăратрĕç, кавир ун ячĕпе хатĕрленĕ парне пулнине пĕлтерчĕç), И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕ **Л.П. Кураков**, Мускав чăвашĕсен культура пĕрлĕхĕн вице-президенчĕ **П.Я. Мульдияров**, Чăваш халăх писателĕ Хĕветĕр Уяр, Тутарстанри Анат Камăри **Н.А. Атряскин**, Патăрьел районĕнчи **И.И. Пахомов** тата ытти нумай делегат тухса калаçрĕ, ЧНК ертÿçисен ĕçне хакларĕ. Каçхи ларура кулянтаракан хыпар ытларах пулчĕ пулин те – кăмăла çĕклекенни те çук мар иккен. ЧР Президенчĕ **Н.В. Федоров** Чĕмпĕр облаçĕнчи **И.С. Кирюшкина** – «ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», Самар облаçĕнчи **И.В. Воронцова** «ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ» ятсем панине пĕлтерчĕ, ăшшăн саламларĕ, удостоверенисене алăран тыттарчĕ. Балтфлотра службăра тăракан Тутарстан чăвашĕ **М.И. Колесников** вара Халăхсен туслăхĕн орденне илме тивĕç пулнă, çак ятпа Конгреса ун ячĕпе Балти флочĕн штабĕн ертÿçисем саламлă телеграмма янă. Тутарстан Республикин Министрсен Кабинечĕн ăслăлăх тата вĕрентÿ заведенийĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăракан пай пуçлăхĕ **А. Султанбеков** Хусанта Туслăх çурчĕ уçасшăн пулнине, 130 пине яхăн чăваш унта хăй вырăнне тупасса шаннине пĕлтерчĕ. 23 пин чăваш пурăнакан Казахстанра халăхсен Ассамблейи уçăлни те чун-чĕрене хăпартлантарать. ЧНК хăй те укçа-тенкĕ енĕпе хĕсĕннине шута илсе, Самар облаçĕнчи Чаллăпуç район администраци ертÿçисем ЧНК ячĕпе укçа-тенкĕ куçарма пулчĕç...

Салам сăмахĕсем вара РФ Правительствинчен, РФ Патшалăх Канашĕн депутачĕсенчеи пуçласа Раççей Федерацийĕн территорийĕсенче вырнаçнă тĕрлĕ-тĕрлĕ республикăсемпе облаçсен пуçлăхĕ-ертÿçисенчен, уйрăм çынсенчен чылай килнĕ. Раççейре халăхсен йышĕпе тăваттăмĕш вырăнта тăракан чăваш халăхне манманнине, унăн ĕçĕ-хĕлĕпе интереслеснех тăнине кăтартмасть-и-ха çакă?

«Вăйлă халăх пулма, çĕнтерме вĕренес пулать. Çамрăк ăрупа ĕçлемелле. Пуласлăх вĕсенче. Кĕвĕçме пăрахмалла, тасан пуйма вĕренмелле. Влаçа кĕме тăрăшмалла. Наци ыйтăвне ниепле те хĕç-пăшалпа татса памалла мар», – çапла каларĕ каçхи лару ĕçне пĕтĕмлетсе ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ **В.А. Тимофеев.**

Ĕç хыççăн яланхи пекех кану вăхăчĕ çитрĕ. Чи малтанах чăваш халăхĕн мухтавлă çыннисене сума суса делегатсем Кĕçтенттин Иванов, Çеçпĕл Мишши, Иван Яковлевич Яковлев палăкĕсем патне чĕрĕ чечек кăшăлĕсем хучĕç, тав туса пуç тайрĕç. Унтан делегатсемпе хăнасене Тольятти хулинчи «Телей» ансамбль хăйĕн юрри-ташшипе савăнтарчĕ. (Сăмах май, залра ларакансем ытларахăшĕ республика тулашĕнчен пулнине шута илмеллехчĕ. «Чăн-чăн чăваш эстрада çалтăрĕсене чĕнмеллех пулнă. «Телейне» хурласа каламастпăр та, пирĕн хамăрăн ку ушкăнран вăйлăрах коллективсем пур, чăн-чăн профессионалсене курас килетчĕ» тенисене те илтме тиврĕ.) Каçхине вара республика тулашĕнче пурăнакансене теплоходпа мăнаçлă Атăл тăрăх уçăлма илсе тухнă.

Лидия ФИЛИППОВА.

***

*Çăртме, 22. Чăваш наци конгресĕн ларăвĕн иккĕмĕш кунĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса памалла пулчĕ. Пĕрремĕшĕ – ревизи комиссийĕн докладне сÿтсе явасси, ăна тишкерсе йышăнасси. Унсăр пуçне, ЧНК уставне сĕнетсе улăштарасси, Мăн Канашпа Кĕçĕн Канаш йышĕсене (малашне вĕсем ЧНК Канашĕпе Президиумĕ пулĕç), ЧНК президенчĕпе вице-президенчĕсене суйласси.*

Анчах ĕнерхи кун тухса калаçакансем **А. Хусанкай, В. Никитин (Станьял), В. Воробьев (Туркай)** доклачĕсене малалла сÿтсе явнинчен пуçланчĕ. Ларура 16 çын хăйĕн шухăш-кăмăлĕпе паллаштарчĕ. Чăваш педагогика институчĕн доценчĕ **А. Ефимов (Кипеч)** вĕрентÿри чăвашлăх «элеменчĕсем», «компоненчĕсем» çинче чарăнса тăчĕ. «Халăха ултавлă «компонентсемпе» тăрантараймăн, пире чăвашлăха упракан чăн-чăн чăваш йăли-йĕрки, чĕлхи тата культури çеç тивĕçтерме пултараççĕ. Ку «элементсем» вара тĕрлĕ чиновниксене кирлĕ пуль...» – терĕ вăл хăйĕн сăмахĕнче. Тутарстанри Чăваш общество-культура центрĕн ертÿçи **Н. Степанцев**: «Темле пулсан та ЧНК пĕлтерĕшĕ ÿссех пырать. Унăн малтанхи Аслă Пухăвĕнче бизнес çыннисем, политологсем сахал пулни, халь вĕсем кăсăклансах ларăва хутшăнни наци юхăмĕ аталаннине кăтартать». «Салампи» пĕрлешÿ ертÿçин çумĕ **Л. Афанасьева** хăйĕн сăмахне чăваш хĕрарăмне халалларĕ: «Чикан майрисем ачисене кирек ăçта та чиканла вĕрентеççĕ, эпир чăваш ачисене хамăр республикăра та чăвашла вĕрентме пултараймастпăр-ха». **Г. Архипов**, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, чăваш чĕлхин аталанăвĕ çинче чарăнса тăчĕ. Патшалăх Канашĕн наци культурипе ĕçлекен комитечĕ пуçарнипе чĕлхе çинчен калакан саккуна пурнăçа кĕртме ПК ĕç тăвакан влаçа 600 миллион тенкĕ уйăрса пачĕ. Анчах унта [правительствăра] çак укçана хăйсем мĕнле пĕлнĕ çавăн пек пайласа янă. Темшĕн-çке питĕ явапсăр ĕçлеççĕ. Эпир хальлĕхе, чăн та, хавшак, – каларĕ малалла Геннадий Николаевич, – çавна кура влаç та пире хисеплеме васкамасть. Патшалăх символĕсене илес пулсан, Тутарстанра та, Мари Элре те Советсен çурчĕ çинче пĕр ялав – хăйсен ялавĕ çеç вăлкĕшет. Пирĕн вара темшĕн иккĕ. Пĕр патшалăх – темиçе ялав . . .

**Д. Иванов** ревизи комиссийĕ ячĕпе тухса каларĕ. Ку комисси ЧНКн виçĕ çула яхăн иртнĕ пурнăçне финанс докуменчĕсем тăрăх тишкернĕ. «Пĕтĕмĕшпе илсен укçа-тенкĕпе усă курнă çĕрте пысăк йăнăшсем çук тесе шутлатпăр, – терĕ комисси председателĕ, – анчах çакна палăртмалла: ĕç хучĕсене йĕркелесе пырасси кирлĕ пек пулса пыман; бухгалтер-кассирăн условисем çитеймĕсĕр; финанс докуменчĕсене тирпейсĕр усранă курăнать, хăш-пĕрне вуçех тупса кăтартаймарĕç... Малашне çак çитменлĕхсене пĕтермелле», – вĕçлерĕ сăмахне Дмитрий Ермолаевич. Ку доклада сасăласа çирĕплетрĕç.

ЧНК хаçачĕ пирки **В. Воробьев (Туркай)** каларĕ. Малтанхи икĕ номере кăларма пулăшнăшăн ЧР Информаципе пичет министерствине тав турĕ.

Устава çĕнетсе йĕркелес ыйтупа **Н. Лукианов**, ЧАП председателĕ, тухса каларĕ. Пуху, каларăмăр, устава çĕнетсе малашне Мăн Канаш вырăнне ЧНК Канашĕ, Кĕçĕн Канаш вырăнне Президиум теме йышăнчĕ. Устава тишкернĕ май килĕшÿсĕр хăш-пĕр япала та сиксе тухрĕ. Сăмахран, «ЧНК фончĕ» текен тытăм ЧНКна пăхăнмасса та пултарать иккен... Мĕншĕн тесен фонд учредителĕсен шутĕнчен Наци конгресĕ... тухса ÿкнĕ. Лару майĕпен пăтăрмахăн салтавне уçса-салтса ку йăнăша тÿрлетме тăрăшрĕ, «Чăваш наци конгресĕн фончĕ» хупă йышши акционер обществин акцийĕсен 51 процентĕн хуçи ЧНК пулмалла тесе палăртрĕ. Анчах та çÿлерех асаннă обществăн устав фондне йĕркелеме миллионшар тенкĕ хывнă спиртзавод та, банксем те çакăнпа килĕшĕç-и – калама йывăр. Ку вăл наци идейипе тата ЧНК ячĕпе витĕнсе «пĕр-пĕр уйрăм ушкăн укçа çапмалли» фонд çеç пулса юлас хăрушлăх çав-çавах сирĕлмен-ха.

Устав тăрăх малашне президента та, вице-президентсене те (вĕсен кандидатурине президент сĕнет) ЧНК Аслă пухăвĕ суйламалла.

Ун хыççăн делегатсем ЧНК Канашне йĕркелерĕç. Унта республикăри кашни районтан пĕрер çын, Раççей Федерацийĕн регионĕсенчен, СНГри çĕр-шывсенчен çавăнти халăх йышне кура суйларĕç.

Яваплă тапхăр – ЧНК президентне суйласси те лăпкă, тавлашусăр иртрĕ. Малтан кандидатсем нумайччĕ пулин те сасăлас тенĕ чух икĕ кандидат – **А. Хусанкайпа В. Никитин (Станьял)** анчах юлчĕç. **В. Тимофеев, В. Воробьев (Туркай), Л. Кураков** хăйсен кандидатурисене каялла илчĕç. Пĕрремĕш сасăлаврах ЧНК президентне **А. Хусанкай** суйланчĕ. Вăл вице-президентсем пулма малтанхисенех – Станьялпа Туркая – сĕнчĕ. Туркай ĕçлеме килĕшмерĕ, ун вырăнне Атнер Петрович Л. Куракова, ЧПУ ректорне, сĕнчĕ. Çапла вара **Л. Кураковпа В. Никитин (Станьял) вице-президентсем пулса тăчĕç.**

ЧНК Аслă Пухăвĕ йышăнусем турĕ. Çакăнпа Чăваш наци конгресĕн иккĕмĕш Аслă пухăвĕ хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ.

Валерий СОРОКИН.

## ЧР ПРЕЗИДЕНЧĔН Н.В. ФЕДОРОВĂН САМАХĔ

Хаклă тăванăмсем, аякри тата çывăхри ырă çыннăмăрсем! Сире пурне те Чăваш наци конгресĕн иккĕмĕш Аслă пухăвĕ ĕçе кÿлĕннĕ ятпа чун-чĕререн саламлатăп, умра тăракан кăткăс та сăваплă ыйтусене сÿтсе явма, тивĕçлĕ те яваплă йышăнусем тума, хастарлă та ăнăçлă ĕçлеме вăй-хăват сунатăп!

Чăваш наци конгресне йĕркелесе янăранпа самаях вăхăт иртрĕ. Туни-пулнине тĕплĕн тишкерсе пăхсан çакă усăмлă палăрать: чăнах та, çитĕнÿсем сахал мар, пурнăçа кĕртмеллисем вара çапах та ытларах. Кун çинчен эсир паян та, ыран та кăсăклансах сăмахласса шанатăп. Çакна кăна асра тытасчĕ: «Ырăпа ырă тĕл пулсан яланах ырă пулать, ырă калаçнă çĕре çу тумлать», – тенĕ ваттисем.

Пысăк пĕлтерĕшлĕ, асамлă халал. Хальхи вăхăтра уйрăмах аса килет, шухăшлаттарать вăл.

Паллах, чăваш халăхĕ чи авалхи халăхсенчен пĕри. Пирĕн чĕлхе, пирĕн йăла-йĕрке, пирĕн ташă-юрă çакна татăклăн çирĕплетсе параççĕ. Чăвашсем хăйсен чи лайăх енĕсемпе – тараватлăхĕпе, сăпайлăхĕпе, ĕçченлĕхĕпе – ĕмĕртен-ĕмĕре сыхланса юлма пултарнă. Эппин, пирĕн хамăрăн авалхи несĕлĕмĕрсене упраса хăварассишĕн, вĕсене тĕнче аталанăвĕн паянхи шайĕпе, ытти халăхсен пархатарлă йĕркисемпе сыпăнтарассишĕн тăрăшмалла, çакăншăн кашни чăвашăн  яваплăх туйăмне çирĕплетмелле.

Эпир малалла тăван халăха каллех тарăн вара, сĕм вăрмана сĕтĕрекенсемпе мар, тĕнче картине кĕрсе, тĕнче ăслăлăхне алла илсе çутта тухас текенсемпе утăпăр. Тĕслĕхрен, «Чăваш Ен – çĕнĕ самана» курав, сăра тăвас тата кăмпа ÿстерес енĕпе пулса иртнĕ канашлусем чăваш çинчен тĕнчипех ырă ят сарчĕç, пирĕн пуласлăха, пултарулăха кăтартса пачĕç, нумай-нумай çĕр-шывран килнĕ çынсене тĕлĕнтерчĕç, хавхалантарчĕç.

Тÿрех калас пулать, юлашки çулсенче тăван çĕр-шывăмăр пĕтĕм Раççей пекех йывăрлăхра. Республикăра ĕç тупайманнисен шучĕ ÿсни, конверси калăпăшĕ пысăкки, промышленноçпа ял хуçалăхĕн нумай предприятийĕсен тухăçлăхĕ чахни, Атăла пĕвеленипе сыхăннă чăрмавсем самаях пăшăрхантараççĕ. Пур-пĕрех пуçа усса ларма тивĕçлĕ мар эпир паян.

«Çапла, çапла тенипе Çавал урлă каçаймăн», – тесе калатчĕç ваттисем эпĕ çуралнă Чучикасси ялĕнче. Пуш параппан çапнипех кĕвĕ çуралмасть...

Пурнăçа тивĕçлипе çĕнетсе улăштарма чи кирлĕ майсем тупас тесе, экономикăн ку чухнехи уйрăмлăхĕсене асра тытса ĕçлес тесе, малашлăха ăнланас, шута илес тесе тăрăшатпăр, вăй хуратпăр. Пирĕн çÿлтен янтă ырлăх-пурлăха кĕтсе лармалла мар, хамăра хамăр сума суса, вăй-хăвата шанса, халăхăн авалтан пыракан йĕркисемпе усă курса республика хăй тĕллĕнлĕхне çĕнетсе, аталантарса ямалла.

«Хуйхă хыççăн савăнăç килетех», – тенĕ ĕлĕкрен. 1995 çулта 100 предприяти тавар туса кăларассине ÿстерчĕ. Çитĕнÿсем уйрăмах электроэнергетика, машинăсем тунă, тимĕр-хурçă япаласем ăсталанă, çăнăх, кĕрпе, комбикорм авăртнă çĕрте палăраççĕ. Тĕпрен илсен, ял хуçалăхĕнче те, çурт-йĕр тăвас, вĕренÿ, культура, сывлăха сыхлас ĕçсенче те ÿсĕмсем пур. Сăмах май каласан, темле йывăр пулсан та тата тепĕр çĕнĕ театр уçма, çĕнĕ журнал кăларма, Аслă Çĕнтерĕвĕн çур ĕмĕрне тата республика юбилейне уявлама, Акатуй ирттерме май тупрăмăр. Паллах, сахал çитĕнÿсем. Ку япăх. Анчах çитĕнÿсем пур, нумайланса та пыраççĕ. Вăхăт хушнă пек ĕçлесессĕн.

Сире кăсăклантаракан ыйтусем, паллах ĕнтĕ, çителĕклех. Вĕсен хушшинче – культура, сут ĕç, наука, хаçат-журналпа кĕнеке шăпи. Аслă Пухура хĕрÿ калаçу пулатех. Шел пулин те, паянхи кун Информаципе пичет, культура тата наци хутшăнăвĕсем енĕпе ĕçлекен тÿре-шара та, вĕрентÿ тата аслă шкулсене ертсе пыракансем те тĕрлĕ сăлтавсем пирки хăйсен тивĕçĕсене çителĕклĕ туса пыраймаççĕ-ха. Ку ытти çĕрте те палăрать. Шухăшламалли те, ĕçлемелли те, пĕр-пĕрне пулăшмалли те кунта кашнишĕн те, пуриншĕн те питĕ нумай.

Тата тепĕр ыйту çинче чарăнса тăрас тетĕп. Мĕнле ăнланмалла-ха чăвашлăха, наци туйăмлăхне, чăваш çĕрне чăннипех юратнине? Ман шутпа, вăл эпир тăван чĕлхепе кулленхи пурнăçра усă курнинче кăна мар, чăвашăн, халăхшăн, унăн пуласлăхĕшĕн ĕç туса, тепĕр хут калатăп – ĕç туса чунтан тăрăшнинче. Ĕçĕ анне пилленĕ чĕкеç чĕлхине хисепленинче, унăн ăс-хакăлĕпе, пуянлăхĕпе усă курса çĕнĕ ăрусене ырă та сывă пăхса ÿстернинче, пурнăç тума вĕрентнинче, ытти халăхсене хамăра кăна тивĕçлĕ танлăха кăтартма пултарнинче. Ан тив, вĕсем чăвашлăхра хăйсене кăмăла каякан ырă енсене, йăла-йĕркене, сăн-сăпата курччăр, хисеплеччĕр. Вара эпир вĕсене, вĕсем пире килĕшсен – халăхсен хушшинче тăнăçлăх, ăнланулăх, татулăх пулĕç.

Юлашкинчен Раççейри лару-тăру çинчен. Чуна хумхантаракан, пăшăрхантаракан ĕçсем, паллах, чеченсемпе çыхăннă. Анчах ку ыйту хăй тĕллĕнлĕхшĕн кĕрешекен мăнаçлă халăхпа кăна çыхăннă тени вырăнлă пулмĕ. Пачах апла мар. Ытларах ĕçĕ Мускавăн наци политики çуккинче те.

Атăлçипе Урал таврашĕнче вырнаçнă республикăсем Чечен вăрçи пуçлансанах кун пирки хăйсен шухăш-кăмăлне Шупашкар хулинче тÿрремĕн пĕлтернĕччĕ. Наци ыйтăвĕсене çапăçу хирĕнче мар, килĕшÿ сĕтелĕ хушшинче татса памалла. Урăхла пулма та пултараймасть. Раççей пĕрлĕхне сыхласа хăварас тесен çаврăнăçулăх, пултарулăх, ăсталăх кирлĕ. Хальлĕхе политика пуçлăхĕсене çавă çитеймест. Пирĕн вара малалла та çĕр-шывсен, халăхсен килĕшĕвне, тăванлăхне куç шăрçи пек упрасчĕ. Хăвăрах куратăр: унçăрăн пысăк инкек-синкек тухма пултарать.

Хисеплĕ тăван-хурăнташ, пĕрле утас тус-çулташ! Пурнăçламалли ĕçсем пайтах-ха пирĕн. Яланах çăварни мар, черечĕпе типĕ эрни те килет.

Çавăнпа та пĕрле ĕçлени вырăнлă. Ахальтен мар пысăк ĕç тума асаттесем ниме пуçтарнă. Аслă пуху Наци конгресĕн хальхи ертÿçисем вĕсем халăхпа пĕрле таччăн çыхăнса ĕçлеме, халăх шанăçне тÿрре кăларма пултарнине хак парĕ, Мăн Канаша чăвашăн ăста та сумлă ывăлĕ-хĕрне суйлĕ. Малалла Наци конгресĕн ертÿçисем тăван республикăна аталантарас ĕçе хастарлăрах, пуçаруллăрах, яваплăрах хутшăнасса шанатăп.

Салам сăмахне чăвашсен паллă сăвăçи каланипе вĕçлес килет: Эпир – ятсăр халăх мар! Эпир – вăйсăр мар! Эпир – чухăн халăх мар! Эпир – мĕскĕн мар!

Анчах та ĕçлемелли пирĕн питĕ-питĕ нумай!

Пурнăçăр тулăх, кĕрекĕрсем сумлă пулччăр, умăртан çăкăр-тăвар ан таталтăр, кĕрнеклĕ, телейлĕ пулăр. Тавах сире, пĕр кÿлĕмри йăхташăмăрсем!

Пĕрле пулар!

## ШУХĂШСЕМ, КАЛАÇУСЕМ...

*Халăх пĕрлешсен вăл хăватлăрах, вăйлăрах пулнине пурте пĕлетпĕр. 1992 çулта Чăваш наци конгресне йĕркеленĕ чухне те çак шухăшах тĕпе хунă. Анчах Конгресс, ку та паллă, аялтан тапса тăракан çăл куç пек кĕрлесе ĕçлесе каяймарĕ. Çакăнта пин-пин сăлтав та пулĕ. Çав хушăрах хамăр пĕр-пĕрне çителĕксĕр хисеплени те, пĕр-пĕрне пулăшма васкаманни те...*

Наци конгресне тĕрлĕ çĕртен нумай çын хутшăннине шута илсе, чăваш халăх аталанăвĕнче ЧНК вырăнĕ, пĕлтерĕшĕ çинчен тĕрлĕ çынран ыйтса пĕлтĕм. Чи малтан Чăваш Республикин президентĕнчен.

**Н.В. Федоров:** Пурин те сăмахлас вырăнне ытларах ĕçлес пулать. Çапăçмасăр. Кашни хăйĕн ĕçĕнче. Наци конгресĕн те, Правительствăн та. Конкретлă тухăç кÿрекен проектсем шырамалла. Халăха пĕтĕмпех çĕклес тесен малтан республикăна тĕреклетес пулать. Вăл вăйлă пултăр. Хальхинчен икĕ-виçĕ хут пуянрах. Апла тăвас тесен пурин те нумайрах ĕçлемелле. Ăс-пуçпа ĕçлесен аван. Ун чухне вара халăх аталанăвĕн ыйтăвĕсене те татса пама çăмăл пулĕ.

**– Республикăна ертсе пырас ĕçре Сире «националистсем» кансĕрлемеççĕ-и?**

– Тĕрĕссипе, ун пеккисем пулсан темех те мар пуль. Анчах эпĕ вĕсене курмастăп...

**А.Г. Николаев, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ, летчик-космонавт:** Темле пулсан та пĕрле пухăнса канашлани кăмăла хăпартать, чуна савăнтарать. Пирĕн халăхăн аталанас, çĕкленес малашлăхĕ пур тесе шутлатăп. Ларăва А.П. Хусанкай лайăх сăмахпа уçрĕ.

**О.М. Цыпленков, Чăваш çамрăкĕсен «Сăвар» пĕрлешĕвĕн председателĕ:** ЧНКн 1-мĕш Аслă Пухăвĕ наци аталанăвĕпе çыхăннă нумай ыйтăва патшалăх влаçĕ умне лартма хăрамарĕ. Сăмахран, Чăваш патшалăхĕ, унăн символики пирки. Хăш-пĕр ыйтусене татса панă темелле. Анчах нумай-нумай ыйту халĕ те «çакăнса» тăратьха. Тÿрех каламалла: тĕп хула та пулин вырăслансах пырать. Урам ячĕсем, чарăнусем вырăсла майлă е пачах вырăсла кăна. Суту-илÿ учрежденийĕсем пирки каламăпăр та – пур тĕлте те вырăс чĕлхи. Чăваш наци конгресĕн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри вăл – чăвашлăх туйăмне аталантарасси. Унсăр пуçне пирĕн ятарласа укçа илсе ларакан патшалăх чиновникĕсенчен вирлĕрех ыйтма вĕренес пулать. Мĕншĕн вĕсене айккинче хăвармалла?

**А.С. Розов, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕ:** Чăваш халăхĕ мĕн чухлĕ нумайтарах пухăнать, чун çавăн чухлĕ вăйлăрах савăнать. Манăн кăмăл-туйăмпа ĕлĕк-авал пулнă Атăлçи Пăлхар патшалăхне çĕнĕрен чĕртсе тăратмалла. Вăл пирĕн Чăваш патшалăхĕ пулма тивĕçлĕ.

**А.А. Павлов, Шупашкар районĕнчи Чаканарти мамăк фабрикин директорĕ:** Чăваш наци конгресĕ – питĕ вырăнлă тата лайăх тытăм. Чăваш Республикин тата республика тулашĕнчи чăвашсене аталанма пулăшакан йышăнусем туса хăварасса эпĕ шансах тăратăп.

**В.А. Тихонов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ:** ЧНК усăллă пулни унăн ларăвĕн пĕрремĕш сехетĕнченех лайăх курăнчĕ. Кунта çынсем пĕрпĕринпе хутшăнса пĕрлĕх тĕшши тупаççĕ. Çакă чăвашсене хăйсене ытти халăхпа танлаштарма, хăйĕн вырăнне шыраса тупма май парать.

**– Ларура экстремистла, урăх халăха кураймасăр калаçнине курмарăр-и?**

– Çук, эпĕ ун пеккине сăнамарăм. Паллах, Валери Туркайăн çемçерех калаçмаллаччĕ ĕнтĕ... Чĕлхе проблемисем пур пулсан... чăваш чĕлхине патшалăх чĕлхи тесе çирĕплетнĕ, çавна хытăрах тытса анчах пымалла.

**Н.Ф. Никольский, РФ коммунистла рабочи партийĕн Чăваш Республикин уйрăмĕн пĕрремĕш секретарĕ:** Паллах, ЧНК кирлĕ тата усăллă. Наци аталанăвне илес пулсан, тÿрремĕнех каламалла, Совет Союзĕ тĕвăленнĕ тапхăрта вăл тухăçлăрах пулса пынă. Халь çав вăхăтри тĕслĕхсемпе пĕлсе усă курни питĕ вырăнлă пулĕччĕ. Наци конгресне çав ĕçсене тепĕр хут шута илме, çĕнĕ тупсăмсем шырама сĕннĕ пулăттăм.

**В.П. Ефремов, Камчаткăри «Канаш» Чăваш общество-культура центрĕн членĕ, çар çынни:** Маншăн, ытти чăвашсемшĕн те çаплах пуль тетĕп, ЧНК пухăвĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ятарласа отпуск илсе килтĕм, унтан килсе çÿреме хальхи вăхăтра çăмăлах мар, хăвăрах пĕлетĕр. Пирĕн патăмăрти чăвашсем (вĕсем унта сахалăнах мар, 20 пине яхан) пĕр-пĕринпе çыхăну тытсах тăраççĕ. Манăн Конгреса ăнăçу анчах сунассăм килет.

**Рафик Трапхан оглу, Азербайджан çынни:** Пирĕн тĕрĕк халăхĕсем пек пуян халăхсем урăх çук пуль. Пĕрисем чат çурçĕрте, теприсем чат кăнтăрта вырнаçнă. Пĕрисем – мăсăльмансем, теприсем – православи тĕнне ĕненеççĕ. Чăвашсем çут çанталăк тĕнне те манман пулас-ха. Çавăнпа эпир – пĕрлешсен – хамăршăн яланах çирĕп тăма пултарăпăр. Эпĕ вара турккăсемпе чăвашсенче шанчăк ытларах упранса юлнă пуль тетĕп.

Валерий СОРОКИН калаçнă.
*«Хыпар», 23.06.1995, 123–124№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН ИККĔМĔШ АСЛĂ ПУХĂВĔН ЙЫШĂНĂВĔСЕМ

**Чăваш Республикин Тĕп Саккунĕ (Конституцийĕ) çинчен**

Чăваш Республикин суверенитетне çирĕплетес, унăн политика системине çĕнетсе улăштарас процесра пирĕн патшалăхăн Тĕп Саккунне – Конституцине йышăнасси чи пысăк пĕлтерĕшлĕ те тĕп ĕç пулса тăрать. Паянхи кун Чăваш Республикин Конституцине хатĕрлес тĕлĕшпе туса пыракан ĕç чăваш халăх ирĕклĕхĕшĕн, унăн никама пăхăнманлăхĕшĕн, аталанăвĕпе пуласлăхĕшĕн тăрăшакан общество-политика вăйĕсене тата çынсене тивĕçтерме пултараймасть. Çавăнпа та Чăваш наци конгресĕ Чăваш Республикин пулас Конституцийĕн проектне йышăнас ĕçе хастаррăн хутшăнассине хăйĕн паянхи тĕп тĕллевĕсенчен пĕри тесе шутлать.

Çакна пĕлтерсе Чăваш наци конгресĕ çапла йышăнать:

**1.** Чăваш Республикин çĕнĕ Тĕп Саккунне вăраха ямасăр йышăнма кирлине тепĕр хут палăртас.

**2.** Чăваш наци конгресĕн Кĕçĕн Канашĕн Конституци проектне хатĕрлекен ушкăна ЧР Конституцийĕн (Тĕп Саккунĕн) ЧНК 1-мĕш Аслă Пухăвĕ йышăннă концепцине тĕпе хурса йĕркелесе çитернĕ Чăваш Республикин Конституци проектне çирĕплетес.

**3.** Чăваш наци конгресĕн членĕсене хамăрăн Конституци проектне халăх хушшинче анлă сарас тĕллевпе хастар ĕçлеме чĕнсе калас.

**Чăваш наци конгресĕ ТТХОна кĕни çинчен**

Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине кĕмен халăхсем хăйсен интересĕсене тĕнче шайĕнче хÿтĕлес тĕллевпе хăйсен уйрăм организацине – Тĕнчене Тухайман Халăхсен Организацине (ТТХО) йĕркелесе янă. Çак организаци хăйĕн ĕçĕнче тĕнче правипе килĕшÿллĕн халăхсен хăй тĕллĕнлĕх принципне тĕпе хурать. Çав тĕллеве халăхсен хĕсĕрлевĕсĕр, мирлĕ, çураçуллă мелсемпе пурнăçа кĕртсе пымалла.

1993 çулхи кăрлач (январь) уйăхĕн 19-мĕшĕсенче Чăваш наци

конгресӗ ҫак организацин тулли праваллӑ членӗ пулса тӑнӑ, ЧНК халӗ чӑваш халӑхӗн прависене ТТХОра хӳтӗлет.

ЧНК ТТХОна кӗни чӑваш халӑхӗшӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнине палӑртса Чӑваш наци конгресӗ ҫапла йышӑнать:

**1.** ЧНК ТТХОн тулли праваллӑ членӗ пулнине ырлас.

**2.** Тӗнче шайӗнчи организацисемпе ҫыхӑнса пӗрле ӗҫлесси ЧНКн пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫӗ пулнине палӑртса хӑварас.

**3.** Чӑваш Республикин Президентне тата Патшалӑх Канашне ТТХОна патшалӑх шайӗнче кӗрес ыйтӑва пӑхса тухма чӗнсе калас.

**«Раҫҫей халӑхӗсен пӗрлӗхӗ» общество юхӑмӗ ҫинчен**

ЧНКн тӗп тӗллевӗсенчен пӗри – Раҫҫей Федерацийӗн территорийӗнче пурӑнакан чӑвашсене пӗрлештересси, вӗсен прависемпе интересӗсене тивӗҫлӗ шайра хӳтӗлесси. Ҫак тӗллеве пурнӑҫа кӗртсе ЧНК патшалӑхӑн тӗрлӗ органӗсемпе тата общество организацийӗсемпе ирӗклӗ майпа хутшӑнса ӗҫлеме хатӗр. 1995 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗнче йӗркеленнӗ «Раҫҫей халӑхӗсен пӗрлӗхӗ» оющество юхӑмӗн тӗллевӗсем ЧНКн тӗп тӗллевӗсемпе тата задачисемпе килӗшсе тӑраҫҫӗ.

Ҫакна шута илсе тата чӑваш халӑхӗн интересӗсене Раҫҫей шайӗнче витӗмлӗрех хӳтӗлеме кирлине палӑртса, Чӑваш наци конгресӗ ҫапла йышӑнать:

**1.** ЧНК президенчӗ тата Мӑн Канашӗ «Раҫҫей халӑхӗсен пӗрлӗхӗ» общество юхӑмне йӗркелесе ярас тӗллевпе туса ирттернӗ ӗҫсене ырлас.

**2.** ЧНК «Раҫҫей халӑхӗсен пӗрлӗхӗ» общество юхӑмӗн йӗркелӳҫисенчен пӗри пулса унӑн ӗҫне пӗр тан та ирӗклӗ майпа хутшӑннине ырлас.

**3.** ЧНК президентне малалла ҫак общество юхӑмӗпе тачӑ та килӗштерсе ӗҫлессине йӗркелесе пыма хушас.

**Атӑлпа Урал тӑрӑхӗнчи халӑхсен Ассамблейи (АУТХА) ҫинчен**

Атӑлпа Урал тӑрӑхӗнчи тӗп халӑхсем – марипе удмурт, ирҫепе мӑкшӑ, тутарпа пушкӑрт тата чӑваш халӑхӗсем – Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхӗ чӑмӑртаннӑранпа пӗр-пӗринпе хутшӑнса, тӑванланса, килӗштерсе пурӑннӑ. Паллах, ҫак халӑхсем утса тухнӑ истори ҫулӗ ялан такӑр пулман, импери тытӑмне хирӗҫ тӑрса пирӗн халӑхсем хресчен пӑлхавӗсене хутшӑннӑ, ирӗклӗх еннелле туртӑннӑ.

Вун-вун ҫул хуҫаланнӑ тоталитарлӑ режим ҫак туртӑма, тӑванлӑх ҫыхӑнӑвӗсене аркатма тӑрӑшнӑ. Паянхи Раҫҫейри сӗмсӗр ларутӑру халӑхӑмӑрсем умне пӗр-пӗринпе таччӑн хутшӑнса пурӑнас, килӗштерсе ӗҫлес ыйтӑва ҫивӗч кӑларса тӑратать.

1994 ҫулхи нарӑс уйӑхӗн 25–27-мӗшӗсенче Шупашкар хулинче Атӑлпа Урал тӑрӑхӗнчи халӑхсен Ассамблейин йӗркелӳ пухӑвӗ пулса иртнӗ, вӑл ҫак пӗрлӗхӗн тӗллевӗсене сӳтсе явнӑ, тӗп документсене йышӑннӑ тата пӗрлӗхе ертсе пыракан органсене суйланӑ. АУТХА йӗркелес ӗҫе выҫӑнти халӑхсен тӗп наци юхӑмӗсемпе пӗрлӗхӗсем хутшӑннӑ.

Чӑваш наци конгресӗ ҫапла йышӑнать:

**1.** Атӑлпа Урал тӑрӑхӗнчи халӑхсен Ассамблейине туса хунине, унӑн тӗллевӗсене ырлас.

**2.** Чӑваш наци конгресӗ Атӑлпа Урал тӑрӑхӗнчи халӑхсен Ассамблейине кӗнине ҫирӗплетес.

**3.** Чӑваш наци конгресӗн ҫыннисен хӑйсем пурӑнакан выҫӑнти тӑванла халӑхсемпе, вӗсен наци пӗрлӗхӗсемпе тачӑрах хутшӑнса, пӗр-пӗрне пулӑшса, «Ирӗклӗхӗршӗн, ирӗклӗхӗмӗршӗн!» йыхрава асра тытса ӗҫлемеллине палӑртса хӑварас.

**Наци политики енӗпе ӗҫлекен патшалӑх комитечӗ ҫинчен**

Чӑваш наци конгресӗн 1-мӗш Аслӑ пухӑвӗнче 1992 ҫулхи юпа уйӑхӗн 9-мӗшӗсенче «Наци политики енӗпе ӗҫлекен патшалӑх комитечӗ ҫинчен» йышӑнӑвне тӗпе хурса Чӑваш наци конгресӗ ҫапла йышӑнать:

**1.** ЧР Президентӗнчен Министрсен Кабинечӗн тытӑмӗнче наци политики енӗпе ӗҫлекен патшалӑх комитечӗ туса хума ыйтас.

**2.** Ҫак комитет чӑваш халӑхӗн йышлӑ диаспорин ыйтӑвӗсене тивӗҫлӗ шайра татса пама, республика тулашӗнче пурӑнакан чӑвашсемпе экономика, культура,информаципе пичет тата халӑха вӗрентес ӗҫ енӗпе ҫыхӑнусем йӗркелеме, ҫак ыйтусемпе ӗҫлекен ятарлӑ ведомствӑсен хутшӑнӑвӗсене координацилесе тӑма тивӗҫлӗ.

*«Хыпар», 22.06.1995, 122№.*

# ЧӐВАШ НАЦИ КОНГРЕСӖН КАНАШӖН ЙЫШӖ

**Раҫҫей Федерацийӗнчи тулай чӑваш выҫӑнӗсенче суйланӑ канашҫӑсем**

**Мускав хули тата облаҫӗ (42 пин чӑваш)**

**Г.Н. Волков,** Раҫҫей вӗрентӳ академийӗн чӑн членӗ (академик).
**А.Г. Николаев,** СССР космонавт-летчикӗ.
**П.Я. Мульдияров,** Мускаври чӑваш культура обществин пуҫлӑхӗн ҫумӗ, медицина наукисен докторӗ.
**В.Н. Бурмистров,** Мускаври чӑваш культура обществин хастарӗ, актер.

**Ленинград облаҫӗпе Питӗр хули (9 пин чӑваш)**

**А.И. Иванов (Ехвет),** Ленинград облаҫӗнчи чӑваш культура обществин пуҫлӑхӗн ҫумӗ, тӗпчевҫӗ.

**Чӗмпӗр облаҫӗ (117 пин чӑваш)**

**И.С. Кирюшкин,** Чӗмпӗр облаҫӗнчи И.Я. Яковлев ячӗллӗ культурӑпа ҫутлӑх обществин пуҫлӑхӗ.
**О.Н. Мустаев,** Чӑвашсен «Еткер» ыр кӑмӑллӑх фончӗн президенчӗ, телерадиожурналист.
**В.Н. Игнатьева (Тарават),** Накатка ялӗ, «Ӗмӗт» ансамбль ертӳҫи, сӑвӑҫ.
**П.Я. Уфимкин,** Накатка ялӗ, Чӑнлӑ районӗн администраци пуҫлӑхӗн ҫумӗ.
Самар облаҫӗ (118 пин чӑваш)
**И.В. Воронцов,** Салей ялӗ, Шунтал районӗнчи чӑваш пӗрлӗхӗн ертӳҫи, шкул директорӗ.
**В.В. Глухова,** Самар облаҫӗнчи «Пехил» пӗрлӗх хастарӗ, чечек ӑсти.
**А.П. Глухов,** Тольятти хулинчи чӑвашсен «Шанчӑк» пӗрлӗх пуҫлӑхӗ.
**Н.П. Панферова,** Самар облаҫӗнчи «Пехил» пӗрлӗхӗн яваплӑ ҫыруҫи, радиожурналист.

**Тюмень облаҫӗ (32 пин чӑваш)**

**А.И. Архипов,** Тюмень облаҫӗнчи чӑвашсен «Тӑван» пӗрлешӗвӗн президенчӗ.
**В.Г. Парфенов,** «Тӑван» пӗрлешӳ канашӗн пуҫлӑхӗ.

**Кемӗр облаҫӗ (25 пин чӑваш)**

**В.Ф. Антонов,** Михалкка ялӗ, Прокопьевск районӗ, Кемӗр облаҫӗнчи чӑваш культурипе ҫутлӑх обществин пуҫлӑхӗ, ял администраци пуҫлӑхӗ.
**В.В. Иванов,** Кемӗр хулинчи чӑваш ентешлӗхӗн ертӳҫи.
**А.К. Андрецов,** Терюхха ялӗ, Топки районӗнчи чӑваш ентешлӗхӗн ертӳҫи, ялти культура керменӗн директорӗ.

**Иркутск облаҫӗ (12 пин чӑваш)**

**М.М. Романов,** Иркутск облаҫӗнчи чӑвашсен «Юлташ» культура центрӗн ертӳҫи.

**Оренбург облаҫӗ (22 пин чӑваш)**

**В.П. Борцов,** Абдулино хула администрацийӗн пуҫлӑх ҫумӗ.

**Саратов облаҫӗ (21 пин чӑваш)**

**В.И. Андюков,** Вольск районӗ, Калмантай ялӗнчи культура центрӗн пуҫлӑхӗ.

**Пенза облаҫӗ (7 пин чӑваш)**

**В.Н. Курташов,** Ҫӑрттанлӑ ялӗ, Ҫӑрттанлӑ (Неверкин) районӗн администраци пуҫлӑхӗн ҫумӗ.

**Калининград облаҫӗ (3 пин чӑваш)**

**М.И. Колесников,** Балтийск хули, Балти флочӗн карап капитанӗ.

**Волгоград облаҫӗ (11 пин чӑваш)**

**Г.А. Зверев,** Волгоград облаҫӗнчи чӑваш ентешлӗхӗн йӗркелӳҫи, инженер.

**Киров облаҫӗ (3 пин чӑваш)**

**В.И. Смирнов,** Киров хулинчи чӑваш ентешлӗхӗн ертӳҫи, профессор.

**Камчатка облаҫӗ (2,5 пин чӑваш)**

**М.А. Саватнеев,** Петропавловск-Камчатскри чӑваш культура центрӗн пуҫлӑхӗ.

**Свердловск облаҫӗ (16 пин чӑваш)**

**И.П. Павлов,** Екатеринбургри чӑваш ентешлӗхӗн ертӳҫи, тӗпчевҫӗ.
**Д.М. Николаев,** Березовский хулинчи чӑваш ентешлӗхӗн ертӳҫи, тӗпчевҫӗ.

**Челябинск облаçĕ (13 пин чăваш)**
**С.Г. Григорьев,** Челябинск облаçĕнчи чăваш ентешлĕхĕн ертӳçи, фотожурналист.

**Магадан облаçĕ (2 пин чăваш)**
**А.И. Кузьмин,** Магаданри чăваш ентешлĕхĕн ертӳçи, тĕпчевçĕ.

**Томск облаçĕ** (8 пин чăваш)
**Ф.А. Матвеев,** Кушавни ялĕ, Кожевниково районĕнчи чăваш ентешлĕхĕн ертӳçи.

**Вологда облаçĕ (1,2 пин чăваш)**
**В.П. Миронов**, Вологдăри чăваш ентешлĕх ертӳçи.

**Чулхула облаçĕ (13 пин чăваш)**
**Г.П. Павлов,** Чулхулари чăваш ентешлĕх ертӳçи, архитектор.

**Красноярск крайĕ (27 пин чăваш)**
**В.И. Мешков**, крайри чăвашсен культурăпа çутлăх пĕрлешĕвĕн пуçлăхĕ.
**Э.А. Кадеров,** Красноярск хулинчи чăваш ентешлĕхĕн ертӳçи.

**Краснодар крайĕ (4 пин чăваш)**
**Р.В. Ишутов,** Черноморски поселокĕ, Çурçĕр районĕнчи чăваш ентешлĕхĕн ертӳçи, тĕпчевçĕ.

**Пушкăртстан Республики (119 пин чăваш)**
**А.А. Кондратьев**, Ĕпхӳ, Пушкăртстанри чăваш культура пĕрлешĕвĕн пуçлăхĕ, чăваш халăх ăсчахĕ.
**И.Г. Тарасов,** Ĕпхӳ, Пушкăртстанри чăвашсен культура пĕрлешĕвĕн яваплă çыруçи, чăваш шкулĕн директорĕ.
**Ю.Т. Михайлов,** Çтерлĕ хулинчи чăваш пĕрлĕхĕн ертӳçи.
**В.М. Петров,** Пелепей хули, «Урал сасси» хаçат редакторĕн çумĕ.
**Г.З. Орлов,** Талпас ялĕ, «Керамика» завод директорĕ.

**Тутарстан Республики (135 пин чăваш)**
**Н.А. Атряскин**, Анат Кама хулинчи чăваш культура пĕрлĕхĕн ертӳçи, чăваш шкулĕн директорĕ.
**В.Г. Корсаков,** Теччĕ районĕнчи чăваш ентешлĕхĕн ертӳçи.
**Г.Н. Карсаков,** Çĕпрел хутлăхĕнчи чăвашсен йăла клубĕн ертӳçи.
**А.А. Савинов,** Аксу ялĕ, «Аксу» совхоз директорĕ.
**А.К. Самаренкин,** Хусан, «Татводмелиораци» пĕрлешӳ ертӳçи.
**Н.С. Степанцев,** Хусан, Тутарстанри П.П. Хусанкай ячĕллĕ чăваш культура центрĕн пуçлăхĕ.

**Удмурт Республики (3 пин чăваш)**
**А.Л. Иголкин,** Ижкар хули, Удмурт Республикинчи чăваш культура обществин пуçлăхĕ.

**Мордва Республики (1,5 пин чăваш)**
**П.М. Митрофанов,** Саранск хулинчи чăваш ентешлĕхĕн ертӳçи.

**Хакас Республики (3,5 пин чăваш)**
**Н.В. Сорокина**, Доможак районĕнчи чăваш культура центрĕн йĕркелӳçи, вĕрентӳçĕ.

**Мари Эл Республики (9 пин чăваш)**
**Р.И. Васильева,** Звенигово, Саттăн хутлăхĕнчи чăваш ентешлĕхĕн йĕркелӳçи, хулари халăх пултарулăх çурчĕн директорĕ.

**Коми Республики (1,3 пин чăваш)**
**В.Н.Богатырев,** Инта хулинчи чăваш ентешлĕхĕн йĕркелӳçи.

**Ненец автономи округĕ (2 пин чăваш)**
**Н.К. Бобриков,** Нарьян-Мар, Çурçĕрти халăхсен комитечĕн пуçлăхĕ, округ администраци пуçлăхĕн çумĕ.

**Ямал-Ненец автономи округĕ (4 пин чăваш)**
**Р.И. Салиндер**, Салехард, округ Депутатсен канашĕн пуçлăх çумĕ.

**Хант-Манси автономи окргуĕ (14 пин чăваш)**
**В.И. Кузьмин,** Яркка районĕ, Юманлă ял администраци пуçлăхĕ.

**НППП (СНГ) çĕр-шывĕсенчен суйланă канашçăсем**

**Украина (20 пин чăваш)**
**Н.П. Соколов,** Львов облаçĕ, Мукачево хулинчи чăваш ентешлĕхĕн йĕркелӳçи.
**Н.Ф. Перещ,** Остер хулинчи Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ вăтам шкул директорĕ.
**Н.А. Александров,** Бахчисарай (Крым) хулинчи чăваш ушкăнĕн йĕркелӳçи.

**Латви (1,5 пин чăваш)**
**И.С. Степанов,** Даугавпилс хулинчи чăваш культура обществин ертӳçи.

**Эстони (1,2 пин чăваш)**
**Г.В. Викторов,** Таллинн хулинчи чăваш культура обществин ертӳçи.

**Казахстан (22 пин чăваш)**
**Н.А. Львов,** Алма-Ата хулинчи чăваш культура пĕрлешĕвĕн президенчĕ.

**Узбекистан (10 пин чăваш)**
**Е.Г. Этнюков**, Ташкент хулинчи чăваш ентешлĕхĕн йĕркелӳçи, политологи институтĕн проректорĕ.

**Чăваш Республикинчен суйланă канашçăсем**

**Л.П. Афанасьева,** Шупашкар хули, Чăваш хĕрарăмĕсен «Салампи» юхăмĕн пуçлăхĕн çумĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн консультанчĕ.
**Д.В. Гордеев,** Шупашкар хули, çыравçă.
**Л.Н. Иванов,** Шупашкар хули, ЧР Ăслăлăх тата ӳнер наци академийĕн президенчĕ.
**А.И. Кипеч,** Шупашкар хули, Чăваш патшалăх педагогика институчĕн доценчĕ, чăваш халăх ăсчахĕ.
**А.К. Кириллов,** Шупашкар хули, ЧР Культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерствин пай пуçлăхĕ.
**Л.П. Кураков**, Шупашкар хули, Чăваш патшалăх университечĕн ректор-президенчĕ, ЧНК вице-президенчĕ.
**А.П. Леонтьев,** Шупашкар хули, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ.
**Н.Е. Лукианов**, Шупашкар хули, Чăваш аталану партийĕн (ЧАП) пуçлăхĕ.
**А.Н. Николаева,** Шупашкар хули, 37-мĕш вăтам шкул директорĕ.
**Н.Е. Наумов,** Шупашкар хули, чăваш йăла-йĕркин тĕпчевçи, элмен, чăваш халăх ăсчахĕ.
**В.П. Петров (Праски Витти)**, Шупашкар хули, РФ тава тивĕçлĕ художникĕ.
**В.С. Пряников,** Шупашкар хули, Чăваш патшалăх университечĕн радиоэлектроника кафедрин пуçлăхĕ.
**В.П. Никитин (Станьял)**, Шупашкар хули, ЧНК вице-президенчĕ, ЧПГĂИ ăслăлăх аслă ĕçлевçи.
**В.Н. Тимуков,** Шупашкар хули, Чăваш телерадиокомпани пуçлăхĕн çумĕ.
**В.В. Воробьев (Туркай)**, Шупашкар хули, сăвăç.
**А.П. Хусанкай,** Шупашкар хули, ЧНК президенчĕ, ЧПГĂИ пай пуçлăхĕ.
**О.М. Цыпленков,** Шупашкар хули, ЧНК аслă çыруçи.
**О.А. Краснова,** Канаш педагогика училищин преподавателĕ.
**Ф.А. Полякова**, Куславкка районĕ, Тĕрлемесри вăтам шкул директорĕ.
**Е.Е. Ерагин,** Муркаш районĕ, Калайкасси вăтам шкул вĕрентекенĕ, элмен, чăваш халăх ăсчахĕ.
**Л.И. Табакова**, Патăрьел районĕ, ача-пăча пултарулăх çурчĕн директорĕ.
**И.М. Саландаев,** Шăмăршă районĕ, «Шăмăршă хыпарĕ» хаçат редакцийĕн корреспонденчĕ.
**Г.П. Солин,** Елчĕк районĕ, Тĕрĕк халăхĕсен олимп комитечĕн пуçлăхĕ.
**Г.Н. Архипов,** Етĕрне хули, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ.
**Г.Т. Терентьев,** Комсомольски районĕ, вĕрентекен.
**В.Я. Шакров**, Тăвай район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ.
**В.В. Муравьев,** Етĕрне район хаçат редакцийĕн корреспонденчĕ.
**О.В. Залогин,** Сĕнтĕрвăрри район администрацийĕн информаци пайĕн пуçлăхĕ.
**И.Я. Данилов,** Хĕрлĕ Чутай районĕнчи тавра пĕлӳçĕсен пĕрлĕхĕн ертӳçи, чăваш халăх ăсчахĕ.
**Г.Н. Никитин,** Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеç ял администраци пуçлăхĕ.
**В.Т. Харитонов**, Канаш район администраци пуçлăхĕн çумĕ.
**В.Н. Улисов,** Çĕмĕрле районĕнчи «Новая жизнь» колхоз председателĕ.
**М.А. Михайловский,** Çĕрпӳ район администраци пуçлăхĕн çумĕ.
**А.П. Смирнов**, Çĕрпӳ районĕнчи Первомайски вăтам шкул вĕрентекенĕ.
**С.В. Фомиряков,** Шупашкар районĕ, ЧР тухăç кĕрешӳ пĕрлĕхĕн тренерĕ.
**А.С. Лосев,** Çĕмĕрле хулин электросеть пĕрлешĕвĕн директорĕ.
**Г.П. Иванов,** Вăрнар район администраци пуçлăхĕн çумĕ.
**В.А. Тимофеев,** Вăрмар районĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ.
**В.А. Иванов,** Элĕк районĕ, Чăваш патшалăх университечĕн профессорĕ.
**В.С. Конуникова,** Улатăр хулинчи ачасен 3-мĕш музыка шкулĕн директорĕ.
**Е.П. Антонова,** Çĕнĕ Шупашкарти «Пайтул» чăваш пĕрлĕхĕн пуçлăхĕн çумĕ.

**ЧНК Канашĕн президиумĕ**

**А.П. Хусанкай** – президент,
**В.П. Никитин (Станьял)** – вице-президент,
**Л.П. Кураков** – вице-президент,
**Ю.А. Тарасов** – ЧНК фончĕн ĕç тăвакан директорĕ,
**В.А. Иванов, А.К. Кириллов, А.П. Леонтьев, Н.Е. Лукианов, В.С. Пряников.**

# ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН УСТАВĔ

### I. Пĕтĕмĕшле положенисем

**1.1.** Чăваш наци конгресĕ (малалла – ЧНК) – чăваш нацийĕн пултарулăх, ăс-хакăл тата культура вăйне пĕрлештерекен тата наци пĕрлĕхне çĕнĕрен вăй илтерес, аталантарас тĕллевпе ĕçлекен общество организацийĕ.

1.2. ЧНК пĕтĕм чăваш халăхĕн социаллă пурнăç тата наци культура ыйтăвĕсене палăртать тата, чăваш çыннисем ăçта пурăннине пăхмасăрах, тĕнчери право йĕркипе килĕшÿллĕн этем прависемпе ирĕклĕхĕсене çирĕп пăхăнассишĕн тăрăшать.

**1.3.** ЧНК хăйĕн ĕçне-хĕлне вăйра тăракан саккунсемпе тата çак Уставпа килĕшÿллĕн Чăваш Республикин территорийĕнче тата чăвашсем пĕр вырăнта йышлăн пурăнакан регионсенче туса пырать.

**1.4.** ЧНК н ертсе пыракан органĕсем вырнаçнă вырăн: Шупашкар хули, Чăваш Республики.

**1.5.** ЧНКн тĕнчери правительствăсем шутне кĕмен, регионсем хушшинчи тата правительствăсем хушшинчи пĕрлĕхсенче чăваш нацийĕн интересĕсемпе чăваш нацийĕн тĕп шăнăрне палăртмалли право пур.

**1.6.** ЧНК гимнĕ – чăвашсен авалхи «Алран кайми аки-сухи» юрри, официаллă элемĕ – Шурăмпуç çăлтăрĕ (чăвашсен кĕскĕ тĕрри).

### II. Тĕллевсем тата тĕп задачăсем

**2.1.** Чăваш Республикин патшалăх влаçĕпе управлени органĕсенче, общество организацийĕсенче чăваш хăй тĕллĕнлĕх тĕлĕшĕнчи уйрăлми прависене хÿтĕлесси.

**2.2.** Чăваш Республикин 1990 çулхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕсенче йышăннă Патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан декларацийĕн принципĕсене пурнăçа кĕртме пулăшса тăрасси.

**2.3.** Саккун кăлармалли пуçарулăх правине пурнăçласа пырасси.

**2.4.** Патшалăх влаçĕн тата управленийĕн органĕсене йĕркелеме тата чăваш нацийĕпе чĕлхине, экологие тата чăваш культурине аталантарас, чăваш халăхĕн ăс-хакăлпа пурлăх пуянлăхне упрас ыйтусем тăрăх вĕсен йышăнăвĕсене хатĕрлеме хутшăнасси.

**2.5.** Халăхăн наци аталанăвне вăйлатасси тата чĕлхе суверенитетне хÿтĕлес, чăваш чĕлхине, наци культурине тата йăла- йĕркине упрас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнасси, наци вĕренĕвĕн тытăмне туса хурасси.

**2.6.** Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсем хушшинче информаци тата культура енĕпе ылмаштарса тăрасси, Чăваш Республикин, Раççей Федерацийĕнчи, НПППри (СНГри) тата чикĕ леш енчи наци-демократи юхăмĕсемпе тата ытти общество пĕрлешĕвĕсемпе тытакан çыхăнусене йĕркелесси, вĕсене аталантарасси.

### III. ЧНК членĕнче тăрасси

**3.1.** ЧНК ирĕклĕ йĕркепе членра тăнин тата интерессен пĕрлĕхĕн никĕсĕ çинче йĕркеленнĕ, хăйĕн ĕçĕсене хăй ертсе пыракан общество организацийĕ шутланать.

**3.2.** Çак Устава йышăнса, унăн тĕллевĕсемпе задачисене пурнăçа кĕртсе пыма хутшăнакан уйрăм çынсемпе тĕрлĕ формăллă уйрăм общество организацийĕсемпе предприятисем ЧНК членĕ пулма пултараççĕ.

**3.3.** ЧНК членĕн çакăн пек право пур:

– унăн ĕçне-хĕлне хутшăнма, ЧНКн ертсе пыракан органĕсене суйлама тата суйланма;

– Уставра палăртнă тĕллевсене пурнăçланă чухне ЧНКран пулăшу илсе тăма.

**3.4.** ЧНК членĕсен тивĕçĕсем:

– çак Устава пăхăнасси;

– ЧНКн ертсе пыракан органĕсен йышăвĕсене пурнăçласси;

– Уставра палăртнă задачăсене пурнăçланă чухне ЧНКна пулăшса тăрасси.

**3.5.** ЧНК членĕсен организацирен ирĕклĕ майпа тухмалли право пур.

**3.6.** ЧНК членĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çак Устава хирĕçлет пулсан, вĕсене ЧНК Канашĕ унăн членĕсен иккĕ-виççĕмĕш пайĕ сасăласа йышăннă тăрăх ЧНКран кăларма пултараççĕ.

### IV. Йĕркелÿ тытăмĕ

**4.1.** Чăваш халăх делегачĕсен Конгресĕ (малалла – Конгресс) ЧНКн чи аслă органĕ шутланать, ăна икĕ çулта пĕр хутчен е кирлĕ пулсан пухаççĕ. Конгресс ЧНК ĕçĕ-хĕлĕн тĕп çулĕ-йĕрĕсене палăртса хăварать, Уставпа ытти программăллă тĕп документсене йышăнать, ЧНК Канашне, контроль-ревизи тата ытти комиссисене, ЧНК президентне тата вăл сĕннипе икĕ вице-президента суйлать. (Вĕсене улшăнусемпе хушăмсем кĕртет).

**4.1.1.** Конгресс йышăнăвĕсене делегатсем ахаль ытларах сасăпа йышăнаççĕ.

**4.1.2.** Конгресс йышăнăвĕсем унта делегатсен çурринчен кая мар хутшăннă пулсан правомочиллĕ шутланаççĕ.

**4.2.** Конгрессем хушшинче ЧНКн ертсе пыракан органĕ Канаш шутланать, ăна икĕ çуллăха суйлаççĕ.

**4.2.1.** Канаш ĕçĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

– ЧНКна йышăнасси тата унран кăларасси;

– Конгресс пухасси тата делегатсен квотине палăртасси;

– ЧНКн вырăнти уйрăмĕсен тата тытăмĕсен ĕçне-хĕлне йĕркелесе тăрасси;

– ЧНК Фончĕн ĕçне йĕркелесе тытса тăрасси;

– ЧНК президенчĕ тăратнипе Канаш членĕсенчен ЧНК Президиумне суйласси;

– ЧНК Фончĕпе ЧНК хаçачĕн Уставĕсене çирĕплетесси, Фонд ертÿçипе хаçат редакторне суйласа лартасси, вĕсене ĕçрен хăтарасси;

– ЧНК йышăнăвĕсене пурнăçа кĕртес енĕпе тĕп çул-йĕрсене палăртасси.

**4.2.2.** Канаш членĕсен пухăвне кирлине кура, çавăн пекех унăн членĕсен пĕрре-виççĕмĕш пайĕнчен кая мар ыйтнипе, анчах ултă уйăхра пĕр хутран кая мар ирттереççĕ.

**4.3.** Президиум ЧНКн ĕç тăвакан органĕ пулса тăрать, вăл ЧНК президенчĕпе вице-президенчĕсенчен, ЧНК Фончĕн ертÿçисенчен тата ытти членĕсенчен тăрать.

**4.3.1.** ЧНК Президиумĕ:

– ЧНК Уставĕн тĕллевĕсене тата тĕп задачисене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлемелли мерăсене тÿрремĕнех йышăнать;

– ЧНК Канашĕ тата Конгресс йышăнмалли документсен, йышăнусен проекчĕсене хатĕрлет;

– Канаша ЧНКн çĕнĕ членĕсене тăратать;

– ЧНК Канашĕн ĕç планне хатĕрлет, тăкаксемпе тупăшсен пĕтĕмĕшле сметине пурнăçа кĕртмелли сĕнÿсем парать;

– ЧНК Фончĕн кулленхи ĕçне йĕркелесе пыма пулăшать;

– ЧНК Канашĕн йышăнăвĕсемпе хушăвĕсене пурнăçа кĕртсе пырас енĕпе ĕçлет.

**4.3.2.** ЧНК Президиумĕн ларăвĕсене уйăхра пĕр хутран кая мар, çавăн пекех кирлĕ пулнине кура ирттереççĕ.

**4.3.3.** Президиум хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен Канаша пĕлтерсе тăма, ăна унăн ларăвĕсенче отчет пама тивĕçлĕ.

**4.4.** ЧНК президенчĕ ЧНКн чи аслă должноçри çынни шутланать, ăна çĕнĕрен суйламалли правăпа икĕ çулталăклăха суйлаççĕ.

**4.4.1.** ЧНК президенчĕн тивĕçĕсем:

– ЧНКна ертсе пырасси;

– ЧНК Канашĕпе Президиумĕн ларăвĕсене пухасси, вĕсене ертсе пырасси;

– патшалăх влаçĕпе управлени органĕсемпе тата ытти организацисемпе тытакан хутшăнусенче ЧНК ячĕпе ĕçлесси;

– ЧНК Канашне ЧНК ĕçĕ-хĕлĕ çинчен кашни çулах анлă отчет тăратасси;

– укçа-тенкĕпе усă курас тĕлĕшпе кулленхи ĕçе йĕркелесси;

– ЧНК Президиумĕн секретариатне йĕркелесси, унăн ĕçне тытса пырасси.

**4.5.** ЧНК контроль-ревизи комиссийĕ, çак Устава тĕпе хурса, ЧНКн мĕн пур органĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăрать, Конгресс умĕнче отчет тăвать.

**4.6.** ЧНК Фончĕ ЧНК тĕллевĕсене тата задачисене пурнăçа кĕртме укçа-тенкĕ тата ытти пурлăхпа пулăшма ЧНК Канашĕ йĕркеленĕ, ăна пăхăнса тăракан орган шутланать.

**4.6.1.** ЧНК Фончĕн акцийĕсен контроль пакечĕн 51 процентĕ ЧНК харпăрлăхĕ шутланса тăрать.

**4.6.2.** ЧНК Фончĕ ЧНК тата унăн Канашĕпе Президиум умĕнче яваплă. ЧНК унăн ĕçĕ-хĕлне тĕрĕслесе тăма тивĕçлĕ.

**4.7.** ЧНКн регион тытăмĕ пур. Унăн вырăнти уйрăмĕсене республика, область, край, округ, хула, район тата ял администрацийĕн шайĕнче чăваш диаспорин представителĕсенчен йĕркелеççĕ.

**4.8.** ЧНКн вырăнти уйрăмĕсем хайсен ертсе пыракан органĕсене суйлаççĕ, вĕсен йышне пайăр регионти чăваш халăхĕн наци культура интересĕсене пурнăçламалли уйрăмлăхсене шута илсе палăртаççĕ.

**4.9.** ЧНКн вырӑнти уйрӑмӗсен ертсе пыракан органӗсем хӑйсен ӗҫне ЧНК Канашӗпе килӗшсе йӗркелеҫҫӗ, вӑхӑтран вӑхӑта Президиума хӑйсен пуҫарӑвӗпе пурнӑҫлакан мероприятисем ҫинчен пӗлтерсе тӑраҫҫӗ.

**V. Право статусӗ. Пурлӑхпа укҫа-тенкӗ**

**5.1.** ЧНК тата ЧНК фончӗ юридици вӑйӗнче тӑракансем шутланса тӑраҫҫӗ.

**5.2.** ЧНКн официаллӑ элемлӗ, хӑйӗн ятне ҫырнӑ пичет, бланксем, фирма палли тата ытти реквизитсем, банк учрежденийӗсенче расчет счечӗ тата ытти счетсем пур.

**5.3.** ЧНК укҫи-тенкине организацисем тата уйрӑм ҫынсем хӑйсен ирӗкӗпе хывнӑ тата пулӑшу йӗркипе панӑ, ЧНК Уставӗпе килӗшӳллӗн ирттерекен мероприятисенчен пырса кӗнӗ, ҫавӑн пекех саккун йӗркипе чарман ытти ҫӑл куҫсенчен илекен укҫа-тенкӗ шучӗпе йӗркелеҫҫӗ.

**5.4.** ЧНК тата унӑн ӗҫ тӑвакан тытӑмӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ валли ЧНК Фончӗн, Фонд ҫум йӗркелӳҫисем тӗллевлӗн хывнӑ, организацисем тата уйрӑм ҫынсем хӑйсен ирӗкӗпе хывнӑ тата пулӑшу йӗркипе панӑ шутран укҫа-тенкӗ парса тӑраҫҫӗ.

**5.5.** ЧНК харпӑрлӑхне ҫурт-йӗр, производство, социаллӑ пурнӑҫ, ыр кӑмӑллӑх, культурӑпа ҫут ӗҫ пӗлтерӗшлӗ объектсем, укҫа-тенкӗ тата Устав тӗллевӗсемпе задачисене пурнӑҫлама кирлӗ ытти пурлӑх кӗме пултараҫҫӗ.

**5.6.** ЧНКн хӑйӗн нушисем тата Уставри ӗҫӗ-хӗлӗ валли патшалӑх тата общество организацийӗсем, ҫавӑн пекех граждансем килӗшӳ йӗркипе панӑ территорипе, ҫурт-йӗрпе тата пурлӑхпа усӑ курмалли право пур.

**5.7.** ЧНК вӑйра тӑракан саккунсем палӑртнӑ йӗрке тӑрӑх ҫӗрпе усӑ курать.

**5.8.** ЧНКн саккунсемпе килӗшӳллӗн, ҫак Устава тӗпе хурса производство, ӳнер, тӗпчев, культура, ял хуҫалӑх, финанс, коммерци предприятийӗсем, юридици вӑйӗнче тӑракансен правипе усӑ куракан ытти предприятисем, организацисем тата учрежденисем туса хумалли право пур.

**VI. ЧНК ӗҫне-хӗлне чара лартасси**

**6.1.** ЧНК чӑваш халӑхӗн делегачӗсен Конгресӗ делегатсен иккӗ-виҫҫӗмӗш пайӗнчен кая мар сасӑласа йышӑннӑ тӑрӑх е вӑйра тӑракан саккунсемпе килӗшӳллӗн суд йышӑннӑ тӑрӑх хӑйӗн ӗҫне-хӗлне чарса лартать.

**6.2.** ЧНК хӑйсене хӑй салатсан е ӑна пӗтерсе хурсан ликвидаци комиссийӗ туса хураҫҫӗ, вӑл ҫак Уставпа тата вӑйра тӑракан саккунсемпе килӗшӳллӗн пурлӑх, укҫа-тенкӗ тата ытти пуянлӑх шӑпине татса парать.

## ХАМӐРӐН ТӐВАН ҪӖР-ШЫВА ҪӖНСЕ ИЛМЕЛЛЕ

**(ЧНК 2-мӗш Аслӑ Пухӑвӗнче каланӑ сӑмахӑн тӗп шухӑшӗсем)**

*Кӗр-кӗр, халӑх, кӑр, халӑх!*
*Мӗн-ма хирӗҫет ҫав халӑх?*
*Ҫиллексе чун хушас тет.*
*(Чӑваш халӑх юрринчен).*

**1. Паянхи лару-тӑру** – Раҫҫей шайӗнче те, хамӑрӑн Чӑваш Республики шайӗнче те – шухӑшлаттарать, Чӑваш наци конгресӗн вырӑнӗпе пӗлтерӗшӗ ҫинчен ыйтӑва ҫӗнӗлле лартма ыйтать.

1993 ҫулта раштав уйӑхӗнче пулса иртнӗ суйлавсем тата кӑҫалхи федераци шайӗнчи Патшалӑх Думин ҫывхаракан суйлавӗ ҫак чӑнлӑха ҫирӗплетсе параҫҫӗ: чӑваш сасси, ытти халӑхсенни пекех, федераци шайӗнче илтӗнми пулчӗ, халӗ те сассӑмӑра палӑртмасӑр тӑрса юлма пултаратпӑр. Б.Н. Ельцинпа «унӑн ушкӑнне» халӑхсен проблемисем, вӗсен хӑй тӗллӗнлӗх (суверенитет) прави кирлӗ мар. Урӑхла каласан – чӑн-чӑн демократи, федерализмпа тӗрлӗ халӑхсен пӗр танлӑхӗн принципӗсем хальхи Раҫҫей тӳре-шарине кирлӗ мар пулса тухаҫҫӗ.

Чӑваш Республикине илес пулсассӑн – кунта та ҫӗнӗ влаҫ тытӑмӗсем, шел пулин те, чӑваш наци политики мӗн иккенне, унӑн пӗлтерӗшне ӑнкарса илеймен-ха.

ЧНКн 1-мӗш Аслӑ Пухӑвӗ ӗҫленӗренпе 2 ҫул та сакӑр уйӑх иртсе кайрӗ. Тӗрлӗ пулӑмсемпе, событисемпе, политикӑри улшӑнусемпе, суйлавсемпе ҫак сисӗмсӗр иртсе кайнӑ тапхӑр питӗ пуян пулчӗ. Савӑнмалли те, кулянмалли те пайтах. Чӑваш Республикинче политика влаҫ тытӑмӗ тӗпрен илсессӗн улшӑнчӗ. ЧНК 1993 ҫулта ҫине тӑнипе раштав уйӑхӗнче Президент суйлавӗ пулса иртрӗ, ЧР 1-мӗш Президенчӗ суйланчӗ. Кайран саккун кӑларакан ҫӗнӗ органа – Патшалӑх Канашне ҫӗнӗ депутатсем суйланчӗҫ. Пӗтӗмӗшле хак парсан – эпир ҫак суйлавсенче малалла утӑм тӑваймарӑмӑр (РФ Патшалӑх Думине Чӑваш Республикинчен чӑваш ҫынни суйланмарӗ!), ҫапах та Патшалӑх Канашӗн пысӑках мар йышӗнче ЧНК тӗллевӗсене ӑнланакан, чӑвашлӑх идейине парӑннӑ, вӗсене саккун йӗркипе пурнӑҫа кӗртме тӑрӑшакан депутатсем ҫук мар (Г. Архипов, А. Леонтьев, А. Смирнов, В. Тимофеев, П. Давыдов тата ыттисем те).

Ҫав суйлавсене пӗтӗмлетсе, тишкерсе ЧНКн тивӗҫлӗ йышӑнусем туса ҫӗнӗ суйлавсем пирки, вӗсене мӗнле майпа хутшӑнасси ҫинчен шухӑшламалла.

Паянхи Раҫҫей влаҫ тытӑмӗсем (хӑйсен питне вӗсем пӗлтӗрхи раштав уйӑхӗнче Чечен Республикипе чечен халӑхне хирӗҫ вӑрҫӑ тата геноцид акцийӗпе кӑтартса пачӗҫ) пире ытти халӑхсемпе килӗштерсе пурӑнма памаҫҫӗ. Халӑх юнне тӑкакан, халӑх умӗнче сӗмсӗррӗн суякан Раҫҫей шайӗнчи «ӗҫ тӑвакан влаҫ» пире кирлӗ мар. Юнпа вараланнӑскер, халӗ вӑл пурне те юнпа вараласшӑн.

Чӑваш Республикине илес пулсассӑн – кунти лару-тӑрӑва Президентпа Патшалӑх Канашӗн хирӗҫӗвӗ аван мар енчен кӑтартса парать. Хамӑрӑн шалти ӗҫе РФ Конституци сучӗ шайӗнче татса пани эпир хамӑра хамӑр хисеплеменнине телӗр хут ҫирӗплетсе пачӗ кӑна. Йывӑррӑн ҫуралакан, аталанса пыракан парламентаризм йӗркине хамӑр алӑпах пӗтерсе пыратпӑр.

**2. Пӑлхар-Чӑваш тӑванлӑхӗ** паянхи кун пире, Чӑваш наци конгресӗн ӗҫне хутшӑннӑ ҫынсене, витӗм, вӑй-хӑват памалли чӗрӗ «ҫӑл куҫсенчен» пӗри. Пирӗн пурин те ас тусах тӑмалла: кӗрешуре, хӑйсен тапса тӑракан вӑйне тӗрӗс ҫулпа ярса мӑн асаттемӗрсем Тӑван ҫӗр-шыва икӗ хут ҫӗнсе илнӗ. Малтан – Каспипе Азов тинӗсӗсен хушшинче (IV–VII ӗм.), Аслӑ (Ылтӑн) Пӑлхар патшалӑхӗ, кайран – Вӑтам Атӑл тӑрӑхӗнче (VIII–XIIIӗм.). Пирӗн умра та – пӑлхар йӑх-несӗл пехилне ас тӑвакан, аса илекен хальхи чӑваш ҫыннисем умӗнче – ҫак тӗп ыйту мала тухса тӑрать. Хамӑрӑн Чӑваш ҫӗр-шывне ҫӗнсе илмелле. Ҫак ӗҫре инҫетри, ҫывӑхри хаклӑ тӑванӑмӑрсен пулӑшӑвӗ пире чӗрӗ сывлӑш пек кирлӗ. Ҫак тӗп ӗҫе эпир пурте пӗрле Чӑваш наци конгресӗ урлӑ тума пултаратпӑр, паллах, унӑн витӗмне ӳстерсе, анлӑлатса, ӑс-хакӑл шайӗпе виҫсе.

Чӑваш Республики чӑвашсен тӗл килӗ пулсассӑн, Чӗмпӗрпе Самар тӑрӑхӗнче, Тутарстанпа Пушкӑртстан ҫӗрӗ ҫинче пурӑнакан йӑхташӑмӑрсем Аслӑ истори виҫипе виҫсен Атӑлҫи Пӑлхар – Чӑваш ҫӗр-шывӗнчех пурӑнаҫҫӗ, администраци-территори чиккисене пӑхмасӑрах Чӑваш Уҫлӑхӗ (Lebensraum) текен пӗрлӗхе ҫирӗплетмелле, аталантармалла, тӗрлӗ майсемпе анлӑлатмалла. Чӑваш Республикипе ҫӳлте асӑннӑ тӑватӑ федераци субъекчӗ пӗр чӑмӑрта пулсан эпир тӗп чӑвашсен йышне 1,4-1,5 миллион ҫын чухлӗ ҫитерейӗпӗр.

«Ҫӗнӗ» чӑваш историне пӑрахӑҫламасӑр (вӑл 19-мӗш ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫурринче пуҫланнӑ), хамӑрӑн малашнехи аталану тӗп ҫул-йӗрне палӑртнӑ чух пӑлхар еткӗрлӗхне алла илмелле. Эпир тӗнче умӗнче, ытти халӑхсен хушшинче вӑтам ӗмӗрсенче «пӑлхар» ятпах паллӑ пулнӑ. «Пин ҫул ытла пӑлхарччӗ эпӗ, унтан мана чӑваш ят панӑ» (П. Хусанкай). «Чӑваш ятне ан ҫӗрт!» – тенӗ асаттемӗрсем. Ҫак ятпах халӑхӑмӑр тӗрлӗ импери пусмӑрне тӳссе пурӑннӑ, чӑваш сӑмахне, тӗррине-юррине упраса паянхи куна ҫитерме пултарнӑ. Пӑлхар тымарӗнчен шӑтса тухнӑ чӑваш ҫинчен тӗнчене пӗлтерер, ҫак ята тивӗҫлӗ шая ҫӗклер. Поэтӑн тепӗр шухӑшне кӑштах ҫӗнетсе ҫапла та калама пулать: «Чӑваш ятпах кӗресчӗ манӑн этемлӗх аслӑ хапхинчен...»

**3. Чӑваш патшалӑх тытӑмӗ тата суверенитет.** Ҫак ыйтусем Чӑваш наци конгресӗн ӗҫӗнче, эпир 1-мӗш Аслӑ Пухура сӳтсе явнӑ, йышӑннӑ документсенче яланах питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ шутланнӑ. Чӑваш Республики чӑваш халӑхӗн пӗртен пӗр наци патшалӑх пӗрлешӗвӗ пулнӑ май, унӑн суверенитетне, чӑнах та, пӗтӗм майсемпе ҫирӗплетсе пымалла. Чӑн-чӑн суверенитет принципӗсем Чӑваш Республикин тытӑмӗнче ӗҫлекен ҫынсен шухӑшлавӗнче, ӗҫӗнче, патшалӑх органӗсем хатӗрлекен саккунсенче, экономика, экологи тата чӗлхепе культура программинче тӗп вырӑн йышӑнмалла.

Тепӗр енчен, Чӑваш Республикин тулай чӑвашӗсем енӗпе тытса пыракан политикӑна вӑйлатас пулать. Чӑваш Республики мӗн пур ҫӗрти чӑваш нацийӗн вӑй-хӑвачӗпе усӑ курса аталанма тивӗҫлӗ. Ҫывӑхри тата инҫетри тӑванӑмӑрсен хушшинче хуҫалӑх пуҫлӑхӗсем, ҫӗнӗ ӳсӗмри ӗҫлӗ ҫынсем, патшалӑхпа администраци тытӑмӗсенче вӑй хуракан ҫынсем, тӗрлӗ чӑваш пӗрлӗхӗсене ертсе пыракансем пур. Енчен те эпир ҫав-ҫав регионпа экономикӑпа суту-илӳ, культурӑпа информаци сыхӑнӑвӗсене йӗркелесе ярас шухӑшлӑ тӑк – яваплӑ ҫак ӗҫре хамӑр ҫынсем ҫине таянмалла, вӗсене явӑҫтармалла. Тӑванӑмӑрсем пирӗн тӗрек, витӗм паракансем пулӗҫ, пире пулӑшма вӗсем яланах хатӗр.

Чӑваш пӗрлӗхне аталантарас тесен чӑвашсем йышлӑ пурӑнакан вырӑнсенче (республика, облаҫ, хула) патшалӑх шайӗнчи элчӗлӗхсем (суту-илӳпе культура центрӗсем), ЧР Министрсен Кабинечӗн тытӑмӗнче наци политика енӗпе ӗҫлекен Патшалӑх комитечӗ пулмалла.

Чӑваш патшалӑхӗн, вӑл Раҫҫей Федерацийӗн субъекчӗ шутланать пулсан та, «шалти» тата «тулашри» хӑйӗн наци политикине тытса тӑмалла. Тӳррипе каламалла: хальлӗхе вӑл ҫук. Эпир хамӑрӑн наци патшалӑх интересӗсене лартман, сӳтсе явман, ҫак чи кирлӗ ыйтӑва ҫӗклемен тесен те йӑнӑш пулмӗ. Чӑваш наци конгресӗн патшалӑх тытӑмӗсемпе пӗрле ҫак ыйтӑва тӗрлӗ енчен пӑхса тухмалла. Кунта чӗлхе политики, халӑха вӗрентес ӗҫ, наци культурин аталанӑвӗ, чӑвашсем йышлӑ пурӑнакан регионсемпе экономика ҫыхӑнӑвӗсене йӗркелесси, наци кадрӗсене хатӗрлесси тата нумай-нумай ыйту кӗрет. Чӑваш «шалти» тата «тулаш» наци политикин анлӑ концепцине тума вӑхӑт ҫитрӗ.

Чӑваш халӑхӗн хӑй тӗллӗнлӗх прави, Чӑваш Республикин суверенитечӗ тата пӗтӗм чӑваш нацийӗн пӗрлӗхӗ – пӗр-пӗринпе тачӑ ҫыхӑннӑ ӑнлавсем. Тӗп вырӑнта – халӑхӑмӑр, ӑна йӗркеллӗ пурӑнма, аталанма тумалли ӗҫӗмӗрсем.

*И мӗн пуян, тӑванӑм?*
*Халӑх пуян.*
*Унсӑр пуҫне кама пуҫ таям.*

**4. Атӑлпа Урал тӑрӑхӗнче** чӑваш халӑхӗ пӑлхар тапхӑрӗнчен пуҫласа марипе удмурт, ирҫепе мӑкшӑ, пушкӑртпа тутар халӑхӗсемпе кӳршӗллӗ пурӑннӑ, халӗ те пурӑнать. Чӑваш наци конгресӗн Мӑн Канашӗ хушнипе эпир Атӑлпа Урал тӑрӑхӗнчи халӑхсен Ассамблейине пухас, йӗркелес ӗҫе хамӑр ҫине илтӗмӗр. Регион шайӗнчи политика Чӑваш наци конгресӗн куллен туса пымалли ӗҫсенчен пӗри пулмаллах.

Регионти халӑхсен Чӑваш наци конгресӗ евӗрлӗ пуҫаруллӑ наци юхӑмӗсем-пӗрлӗхӗсем пур («Марий калык погын», «Масторава», «Удмурт Кенеш», Пушкӑрт халӑх центрӗ «Урал», Пӗтӗм тутарсен общество центрӗ тата ыттисем). «Ирӗклӗхӗршӗн, ирӗклӗхӗмӗршӗн!» йыхрав чӗнӳ шайӗнче ан юлтӑр тесен пирӗн тачӑрах ҫыхӑнса, пӗрле ӗҫлемелле. Пӗр-пӗринпе хутшӑнмалла, пӗр-пӗрне пулӑшу, усӑллӑ канаш парса тӑмалла. Тӑванла халӑхсене ҫакна туса пыма истори е шӑпа хушса хӑварнӑ, пирӗн ҫыхӑнусем ҫӗнӗ вӑй илмелле, мӗншӗн тесен халӑхӑмӑрсен умӗнче тӑракан ыйтусем нумай чухне пӗрешкел. Регионта пурӑнакан финн-угор тата тӗрӗк халӑхӗсен варринче чӑваш халӑхӗ тӑрать. Атӑлпа Урал халӑхӗсен пӗрлӗхне пирӗн, чӑвашсенех, аталантармалла, витӗм парса тӑмалла! Пирӗнсӗр ҫак ӗҫе никам та тӑваяс ҫук.

Юлашки вӑхӑтра чӑвашсем тӗрӗк тӗнчипе тӗрлӗ шайри ҫыхӑнусем йӗркелеме пуҫларӗҫ. Чӑваш наци конгресӗ ку ӗҫе ырлать, тӑванла тӗрӗк халӑхӗсен ӗҫне-хӗлне, вӗсен аталану ҫул-йӗрӗсене пирӗн те тишкермелле, пӗлмелле, вӗсемпе усӑ курмалла. Ҫав вӑхӑтрах ҫак ӗҫе, пирӗн шутпа, уйрӑм ҫынсен шайӗнче кӑна туса пымалла мар. Чи малтан тӗрӗк халӑхӗсемпе, Турци Республикипе ӑслӑлӑхпа культура ҫыхӑнӑвӗсене аталантармалли анлӑ программа хатӗрлемелле. Ҫак программӑна пурнӑҫлама чӑн-чӑн профессионалсене хутшӑнтармалла, вӗсем тулай чӑвашӗсем хушшинче те пур. Тӗпчевҫӗ (историк, чӗлхеҫӗ), ҫыравҫӑ, чӑн политик хӑйсене валли ҫак программӑра вырӑн тупмаллах.

Тепӗр енчен пӑхсан, пирӗн чӑвашсем финн-угор тӗнчипе ҫывӑх пулнине те манмалла мар.

Атӑлҫи Пӑлхар-Чӑваш ҫӗр-шывӗ «Ҫурҫӗрпе Кӑнтӑр», «Анӑҫпа Тухӑҫ» тӗнӗлсен тӑваткалӗнче вырнаҫнӑ, меллӗ ҫав вырӑнпа усӑ курса хӑватлӑ, 13-мӗш ӗмӗрччен никама пӑхӑнман, ирӗклӗ, Тухӑҫ Европӑри чи аталаннӑ патшалӑхсенчен пӗри шутланнӑ. Ҫак историпе геополитика чӑнлӑхне асра тытса, хальхи вӑхӑтра халӑхӑмӑр тӗнче правин субъекчӗ пулма тӑрӑшнӑ май, Чӑваш Уҫлӑхне нумай енӗпе аталантарса пымалла.

Чӑваш наци конгресӗ Тӗнчене тухайман халӑхсен организацийӗн тулли праваллӑ членӗ пулнӑ май, пирӗн тӗрлӗ халӑхсемпе, патшалӑхсемпе ҫыхӑну тытма майсем уҫӑлса кайрӗҫ. Тӗнче правин йӗркисене вӗренмеллех, хамӑр ирӗклӗхе тӗнче прави никӗсӗ ҫинче хӳтӗлемелле.

Аслӑ тӗнче умӗнче уҫӑлса пырать чӑваш, Чӑваш наци конгресӗ, ҫак ӗҫе пуҫараканскер, ӑна малалла тӑсма тивӗҫлӗ.

**5. Эпир тата Раҫҫей.** Хамӑр истори кун-ҫулне, хура халӑх шухӑшлав йӗркине илес пулсассӑн – ҫак ыйту тӗп ыйтусенчен пӗри пулса тӑрать. Тӑватӑ ӗмӗр ҫурӑ пирӗн халӑх Раҫҫей импери, кайран Совет импери тытӑмӗнче пурӑннӑ. Ирӗк, суверенитет ӑнлавсем пирки эпир 5 ҫул каялла тин сӑмах хускатма пуҫларӑмӑр. Чӑваш халӑхӗн ҫурри (ытларах та!) республика тулашӗнче пурӑнать. Унта чӑвашсен тӗрлӗ пӗрлӗхӗсем пур, вӗсен хӑйсен пурнӑҫӗ, нуши, савӑнӑҫӗ. Халӑхӑмӑра уйӑракан чиксем юлашки виҫӗ-тӑватӑ ҫул хушшинче майӗпен саланаҫҫӗ. Ҫапах та Раҫҫей текен Левиафан пур (унӑн символӗ халӗ икӗ пуҫлӑ ӑмӑрт кайӑк тепӗр хут пулса тӑнӑ ӗнтӗ). Енчен те эпир кунти тӳре-шарапа хирӗҫсе те, вӗсене критиклесе те пур пӗр вӗсемпе пӗр чӗлхе тупма пултаратпӑр тӑк – тулай чӑвашӗсен лару-тӑрӑвӗ урӑхларах. Ҫакна шута илсе Чӑваш наци конгресӗн тӗп тӗллевӗсенчен пӗри ҫакӑ пулмалла – «Чӑваш ыйтӑвне» федераци шайӗнче пур майсемпе лартма тӑрӑшни. Раҫҫей Федерацийӗн шайӗнче чӑваш сасси ҫирӗп пулмалла. Ку енӗпе пире Раҫҫей халӑхӗсен Конгресӗ (Союзӗ) ҫӗнӗ мелсем уҫса парать. Ҫак общество юхӑмӗ ҫӗртме уйахӗн 16–17-мӗшӗсенче йӗркеленсе кайрӗ. Федераци Пухӑвӗн суйлавӗсенче те хамӑрӑн кандидатсене тӑратмалла, вӗсене суйлавра ҫӗнтерме пулӑшмалла.

Ҫакна та асӑнса хӑварар: федераци шайӗнчи суйлава эпир паянхи Раҫҫейри тӳре-шара тытса пыракан политикӑна хирӗҫ пулса, чӑн федерализм шухӑшне, халӑхсен пӗр танлӑхне мала тӑратса, республикӑсен – суверенлӑ патшалӑхсен хӑватне ӳстерес тӗллевпе хутшӑнӑпӑр. Раҫҫейри ҫурма суя демократсен икӗ питлӗ политикине эпир, паллах, йышӑнма пултараймастпӑр.

Раҫҫей халӑхӗсен пӗрлӗхне (союзне) йӗркелекенсенчен пӗри пулнӑ май, Чӑваш наци конгресӗ ҫав вӑхӑтрах тӗрлӗ вырӑнта пурӑнакан чӑвашсен чи Аслӑ Пухӑвӗ пулса юлать. Эпир анлӑ ҫак юхӑма хутшӑнса хамӑрӑн тӗп тӗллевсене (Чӗрӗлӳ, Аталану, Пӗрлӗх) ҫухатмастпӑр, вӗсене урӑх шайра палӑртатпӑр сеҫ.

***

Чӑваш наци конгресӗн ӗҫӗнче ҫӗнӗ тапхӑр пусланать. Ӗнерхи савӑнӑҫхуйӑ, хӑш-пӗр чухне пӗр-пӗрне ӑнланманни, кирлӗ мар чухне шӑвшав кӑларни иртнӗ вӑхӑтра юлтӑр.

**Чӑваш наци идейине (тӗп шухӑшне, тӗллевлӗхне) ҫӗнӗлле палӑртма вахӑт ҫитрӗ. Кунта тӗп вырӑна философипе политика, этикӑпа илемлӗх категорийӗсем тухсан аван пулӗччӗ. Чӑваш патшалӑхне тӑвас ӗҫе хӑнӑхмалла, кашни чӑваш ҫынни хӑй ҫине тӑрса хӑйӗн ӗҫӗпе Чӑваш Ҫӗр-шывне ҫӗнсе илме тӑрӑштӑр. Тепӗр пилӗк ҫултан эпир, ытти халӑхсемпе пӗрле, XXI ӗмӗре кӗретпӗр. Ҫӗнӗ самана пуҫланӗ. Мӗнле шухӑш-кӑмӑлпа, мӗнле сӑн-сӑпатпа кӗрӗпӗр-ши эпир унта?**

Ҫак ӗҫе чи малтан хӑйсем ҫине ӑслӑлӑхпа пултарулӑх интеллигенцийӗ тата политика лидерӗсем илме тивӗҫ. Чӑваш наци конгресӗн йышӑнӑвӗсенче эпир ҫак шухӑша аталантарас тӗлӗшпе хӑш-пӗр сӗнӳсем тӑратса пӑхнӑччӗ. Мӑн Канашӑн уйрӑм ҫыннисем те анлӑ ҫак ыйтупа ҫырман мар. Анчах хальлӗхе ҫак ӗҫ малалла каяймарӗ-ха. Чӑваш наци идеологийӗ пулмасан халӑхӗ те пулмасть пулӗ. Ку вӑл пӗрпӗр парти идеологийӗ мар. Халӑх пурнӑҫӗн шӑнӑрӗ (векторӗ), халӑхӑн кӑмӑлӗ, унӑн чун ӑнтӑлӑвӗ хывӑнмалла наци идеологийӗн никӗсне.

Кам-ха вăл – ХХ ĕмĕр вĕçĕнче пурăнакан чăваш? Мĕнле чунпа, ăс-хакăл еткерлĕхĕпе çĕнĕ ĕмĕре кĕме хатĕрленет вăл? Этемлĕх умĕнче каламалли мĕнле сăмах пур унăн?

Тăван халăхăмăрăн аслă тĕнчере хăйĕн вырăнне тупмаллах.

Эпир чăваш наци интересĕсене хамăр республикăра, Атăлпа Урал шайĕнче, Раççей Федераци шайĕнче, тĕрĕкпе финн-угор пĕрлĕхĕнче, тĕнче шайĕнче уççăн, çирĕппĕн палăртма тата вĕсене пурнăçа кĕртме пуçласан кăна чăваш халăхĕ чăмăртаннине, чăваш нацийĕ пулма пуçланине туйса илĕпĕр. Вара тин Чăваш наци конгресĕ те хăйĕн ятне тÿрре кăларĕ.

Атнер ХУСАНКАЙ,
Чăваш наци конгресĕн президенчĕ.
*«Хыпар», 20.09.1995.*

## ИНÇЕТРЕ ТЕ, ÇЫВĂХРА ТА – ЧĂВАШ ПĔР ХАЛĂХ

### (ЧНК 2-мĕш Аслă пухăвĕнче 1995 çулхи çĕртмен 21-мĕшĕнче каланă сăмах)

Хисеплĕ конгрессменсем, хаклă хăнасем, юратнă çыннăмăрсем!

Тĕнче кисревĕсем витĕр чĕррĕн юлса, пин-пин пусмăр айĕнчен хăтăлса тухса, тахăш самантра «чăваш-йăваш» ятпа витĕнсе, тăван халăхăмăр ХХ ĕмĕре вăй-халпа, хăй ячĕпе те çĕр-шывĕпе утса тухрĕ. Несĕлсен авалхи карт çырăвăллĕ кĕнекине тăшманăн «хĕрлĕ ĕни» вут-кăварпа çуласа янă. Икшупа Çичшу хушшисенчи сукмаксене ĕмĕрсем хупланă, Кавказпа Атăл тăрăхĕнчи ял-хуласене çĕрпе танлаштарнă... Мĕн юлнă сĕм аваллăхран? Тĕлĕнмелле таса йăла-йĕрке, ăмсанмалла хитре тĕрĕ-эреш, чуна уçăлтармалăх сăвă-юрă, вутра çунман, шывра путман, çилпе вĕçмен, çĕрте çĕрмен тăван чĕлхемĕр юлнă. Ĕçченлĕх, сăпайлăх, чăтăмлăх пур тата мăн маçаксем каласа хăварнă тĕп вĕрентÿ – «чăваш ятне ан çĕрт!» тесе хытарни – ваттисен асĕнчен тухман-ха. Эй, ваттисем! Эй, ват çынсем! Асран кайми несĕлсене пуç тайса, паян Шупашкарта Пĕрлĕх Юпи лартрăмăр, сакăр сыпăк тăванĕсене асра тыма тупа турăмăр. Хамăра ăс парса пурăнакан ваттисем эсир, Конгресс çыннисем. Сирĕнтен аслăраххисем, тăван халăх малашлăхĕшĕн çунса тăракансем аслă тĕнчере урăхра пулас та çук. Пуррисене йăлтах пухăнма тĕв тунăччĕ. Авал чăваш асаплă пулнине çамрăксене каласа парăр: тăван çĕр-шывăн капăр чĕлхине ялан савма хушса хăварăр!

Илтрĕ-и Çеçпĕлле чĕнĕвĕре таçти касри чăваш ачи, аса илсе пурăнать-и Ĕпхÿри е Саратоври тĕп чăвашăн вырăсла чĕвăлтетекен чĕкеçĕ амăшĕн, кукамăшĕн чĕлхине, йăлине, юррине? Майĕпен илтсе пырать, анчах сăмахăмăр сарăласси татах малта-ха.

Ăçта çитсен те, ăçта кăна пурăнсан та – чĕлхемĕр пĕрре, кăмăлсем пĕрре, ĕрет-хисепĕмĕр пĕрре... Анчах ăнкарулăхăмăр расна: е никам кирлĕ марла кăйттă, е тĕнче улпучĕнни пек чăртăк. Пĕрисене шеллесе ăнлантарма, теприсенчен йĕрĕнсе пăрăнма пуçламасăр сапаланнă халăхăмăрăн чăмăртанăвĕ, вăй-хал çĕкленĕвĕ, хастарлăхĕ çинчен калама йывăр. Аякра-и чăваш, çывăхра-и – эпир пурсăмăр та çут çанталăк çĕр çине туса янă пĕр халăх ачисем. Мухтанмалăх хамăрăн истори, мăнаçланмалăх хамăрăн паттăрсемпе ăстасем пур. Çĕр-шывăмăр хĕсĕкки пире тата хытăрах тăрăшма хистетĕр. «Çĕр-шывăмăра çĕнсе илмелле!» – терĕ Конгресăн тĕп сăмахçи Атнер Хусанкай. Чăваш çĕр-шывĕ аслă. Вăл Чăваш Республики кăна мар. Чукоткăпа Камчаткăран пуçласа Калининградпа Мукачево таранах. Хамăрăн пĕрлĕх туйăмĕпе çак виçесĕр анлăша çĕнсе илмелле пирĕн. «Наци ыйтăвĕсене çапăçу хирĕнче мар, килĕшÿ сĕтелĕ хушшинче татса памалла. «Ырăпа ырă тĕл пулсан – ырă пулать. Ырă калаçнă çĕре çу тумлать», – терĕ Республика Президенчĕ Николай Федоров, тăрăшса ĕçлеме, килĕштерсе, нимеленсе пурăнма пиллерĕ. Çул кăтартакан çăлтăрла çутă сăмахсем çаксем. Çапла пулса пытăрччĕ яланах.

Паçăр кун йĕркине çирĕплетнĕ чухне каларĕç: 20-мĕш çулсенче хатĕрленĕ «Пысăк Чăвашстан» ыйтăвне тепре пăхса тухмалла. Чĕмпĕр хулине шĕкĕр хула туса, таврари çĕрсене пĕр республикăна пĕрлештермелле. Шухăшĕ илĕртÿллĕ, ĕмĕчĕ пысăк. Анчах чăнласа пăхар-ха паянхи пурнăçа: май пур-и çĕрсене пайласси çинчен калаçма? Чечен çĕрĕн чĕр тамăкĕ мĕн çинчен калать? Пире чикĕсене пĕрлештерни мар, чунсене, ĕç-хĕле, хамăра пĕрлештерни кирлĕ. Ÿсекен, аталанакан чĕрлĕх (вăл шутра этем те, халăх та) пĕрлешме, вăйланма тăрăшать. Чăваш халăхĕ те пĕрлĕх туйăмне çухатман, шырама, тăрăшма пăрахман.

Эпир пĕрремĕшсем мар. 1917 çултах, çу уйăхĕнче, Хусанта Атăлçи вак халăхсем Аслă Пуху иртнернĕ. Çав çулах çĕртмен 20–28-мĕшĕсенче Чĕмпĕрте пĕтĕм чăваш наци съезчĕ паянччен кивелмен йышăнусем тунă, патшалăх тытăмне федераци, конфедераци е пачах харкам уйрăм тумалли пирки тавлашнă, пуçа ватнă. Сапаланнă чăваша тем пекех пĕр Республикăна пĕрлештерес тесе тăрăшакан пайтах пулнă. Анчах ăна мĕнле тумалла-ши? Чăвашлăх шухăшĕпе, чăваш идейипе пĕрлештермелле тетпĕр. Вырăс идейи, еврей идейи иртнĕ ĕмĕрсенчех пулнă. Чăвашăн та идейăсемпе идеологийĕ пурах, унсăрăн халăх чĕрĕ халлĕн çак таранччен упранса пурăнайман пулĕччĕ. «Чăваш ятне ан яр!» тени халăх тĕнче курăмĕн, ĕретлĕхĕн, тĕнĕпе йăлин, кулленхи философийĕн тĕп управĕ, пĕрремĕш сăвапĕ мар-ши?

Хальлĕхе хамăр ята яни пайтах-ха. Хамăрăн чăн историе пĕлменни, йăласен йĕркине уяманни, тăван чĕлхене вĕренменни, ĕçке кĕрсе кайни, кил-йышпа ватти-вĕттине тата хĕрарăма аслă хума пăрахни, сывлăхпа халăх çинчен патшалăх виçипе шухăшлама чарăнни, ырлăх-пурлăхпа тирпей-илем саккунĕсене пăса-пăса тăкни... Маçакмамаксем ĕмĕрне илтмен чир-чĕр айне кĕрсе кайни тата!

Синкерĕсем çине-çине. Тулай чăвашсен вĕсем тата нумайрах. Тăван чĕлхепе вĕрентме çукки, хаçат-журнал яла пачах пыма пăрахни, ялта тăван культурăпа ĕçлеме кадрсем çукки... Лайăхпа пуçланнă çĕкленÿ хумĕ каялла чакма пуçларĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе вырсарни шкулĕсем, чăваш класĕсем хупăнма тытăнчĕç – кĕнеке çук, вĕрентекен çук тата ытти çук... Çавăнпа Чăваш конгресĕшĕн тулай чăвашĕсен ыйтăвĕ – тĕп ыйтусенчен пĕри. Вăл ыйтусене татса пама Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин пĕрлĕхлĕ тÿре-шаралăхĕ çуккине шута илсен - пĕрремĕш ыйту.

Тулай чавашĕсен ăс-хакăлпа культура ыйтăвĕсен программине пĕрремĕш Аслă Пухурах палăртса хăварнăччĕ. Анчах – каларăм – малалла каяс вырăнне каялла чакма пуçларăмăр. Пуçланă пĕчĕк ĕçсем пысăк чĕнÿсем айне пулса çухалма пуçларĕç. Пĕтĕмĕшле декларацисен, йышăнусен вăхăчĕ иртрĕ. Пĕрчĕк-пĕрчĕк татăклă ĕçсем патне çаврăнса çитрĕмĕр.

**Малтан Чăваш наци конгресĕн тулай чăвашсем хушшинче ĕçлекен тытăмне йĕркелесе çитересси çинчен каламалла. Тĕрлĕ çĕрте ентешлĕхсем, пĕрлĕхсем, культурăпа çут ĕç центрĕсем, ытти йышши пĕрлешÿсем халĕ 30 ытла пулни паллă. Вĕсем пĕр-пĕринпе те, тепĕр чухне ЧНК штабĕпе те çыхăнман, хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ. Малашне Конгресс витĕмĕ пур района та, пур çĕре те çитсен аванччĕ.**

Чăваш конгресĕн пайĕ кашни ялтах пулаймĕ, анчах кашни районтах, ялтах тăван халăх ĕçне туса, хускатса, йĕркелесе пыракан вăй пулмаллах. Ăна ятарласа хушнипе тăвас çук. Вăл хăй халăхра пулмалла. Ялти йĕркене, йăласене, хутшăнусене чăваш ĕмĕртен община йĕркипе тытса пынă. Çемье пуçĕ, урам ертÿçи, ял ватти халăх хушшинче хисепре тăнă чухне халĕ те чăвашлăх арканман-ха. Кам мĕнле шутлать, анчах пирĕнтен нумайăшĕ тăван чĕлхепе калаçни, вĕренни, тăван халăхăн йăлисене, уявĕсене, ĕç йĕркине тытса пыни кирлĕ тесе калать.

Малтанласа чăвашсем йышлă пурăнакан вырăнсенче пуринче те культура ĕçне йĕркелекен çынсемпе вăйсем кирли курăнать. Шкул, вулавăш, культура керменĕ, тăван ен музейĕ тата ытти çав ĕçе пуçарса тăма пултарĕ. Унсăр пуçне тата хуласенче, райцентрсенче чăваш кĕтесĕ вырăнĕнче ентешлĕхсен, центрсен, редакцисен çурчĕсем, пултарулăх ушкăнĕсем, театрсен залĕсем ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтра урамсенче, парксенче уявсем, тĕл пулусем, пухусем ирттермелли вырăнсем палăра пуçларĕç. Самарта, Мускавра, Ĕпхÿре ун пек юратнă вырăнсем палăрчĕç.

Майӗпен асăну вырăнӗсем йӗркеленеççӗ. Самар хулинче вăл – Влас Паймена пытарнă вырăн умӗнче. Мускавра ун пекки – И.Я. Яковлев вил тăпри патӗнче, Ваганькă масарӗнче. Ӗпхӳре, ахăртнех, П.М. Миронов çурчӗ, Хусанта Н.И. Ашмарина, Н.В. Никольские тата ытти паллă çынсене хисеплесе уçнă вырăнсем çапла пулӗç. Чӗмпӗрте пухăнмалли вырăн – Чӗмпӗр чăваш шкулӗн картишӗ. Малашне тӗрлӗ хуласен хăйсен чăваш лаптăкӗсем – ташă, юрă, вăйă-кулă вырăнӗсем пулӗç. Шупашкарта этнокультура паркӗ (паян ирхине Асăну Юпи лартнă парк) çавăн пек пула пуçларӗ: унта чăваш салампийӗсем хаваслă уявсем ирттереççӗ.

***

ЧНК уставӗн тулайсене тивекен пайӗ çинчен каласа хăварас тетӗп. Пӗрремӗш пухура аякри чăвашсем хăйсен штаб-хваттерне тăвас шухăш тытнăччӗ. Чӗмпӗрте е Хусанта тулайсен съездне пухас сӗнӳ пулнăччӗ. Ман шутпа, эпир пӗр-пӗриншӗн пурсăмăр та – тулайсем. Пирӗн Тăван çӗр-шывăмăр унта та, кунта та. Хальхи администраци карттисемпе пăхса, хамăра хамăр икке е виççе пайлани юрăхлă пулмӗ. Ахаль те сахал вăйсене уйăрса ярăпăр, ура çине часах тăраймăпăр. Малашне Аслă Пухусене, Канашăн анлă ларăвӗсене тӗрлӗ вырăнсене (Ӗпхӗве, Хусана, Чӗмпӗре, Самара, Сарă тăва, Мускава, Кемӗре) тухса ирттерни лайăхрах пайта кӳрӗ. Çакă вырăнти лару-тăрăва тишкерме, пулăшма, халăхпа паллашма май парӗччӗ, лару е пуху умӗн хытăрах хатӗрленме, ӗç-пуçа çирӗпрех йӗркелеме хистӗччӗ. ЧНК шухăшӗсене халăх патне те, тӳре-шара патне те уççăнрах çитерме пулăшӗччӗ.

ЧНК Канашӗн членӗсен пӗтӗм чăваш тӗнчи пурнăçне витӗр пӗлмелле. Облаçсемпе республикăсенчи тӗп центрсем шанса пурăнни вăраха пыраймӗ. Тутарстанра, Пушкăртстанра, Самарпа Чӗмпӗр хутлăхӗсенче тӗп хулари центрсемсӗр пуçне ытти хуласемпе районсенче вăйлă ӗçлекен пӗрлӗхсем (ентешлӗх, общество, центр тата ытти те) пур. ЧНК штабӗ вӗсемпе тӳрӗ çыхăну тытни витӗмлӗрех. Иртнӗ виçӗ çул çавна лайăх кăтартса пачӗ.

Татса каламалли тапӗр сăмахăм – ЧНК политика партийӗ пулмалли е пулмалла марри пирки. Тавлашусем хытах сиксе тухрӗç. Эпӗ ЧНКна политика партийӗ туса ярассине хирӗç тăратăп. Конгресс политика партийӗ мар. Вăл ытти партисене, юхăмсене, пысăк е пӗчӗк вăйсене пӗрлештерсе тăракан, ялан ӗçлекен организаци. Партисем суйлав умӗн кăмпа пек шăтса тухаççӗ те хăйсен ертӳçисемшӗн хытă шавлаççӗ, кайран мӗнле программăпа халăха астарнине манса каяççӗ. ЧНК, паллах, политика ыйтăвӗсенчен пăрăнса тăраймасть. Халăхшăн анлă программăпа ӗçлени хăй вăл пысăк политика. Аса илетӗр пулсан, Мăн Канаш ларăвӗнче ЧНКн политика партине тума йышăннăччӗ. Анчах вăл йӗркеленмерӗ. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен халăха ун йышши партисем кирлӗ мар.

***

Ыйтусен иккӗмӗш çаврăмӗ – Чăваш Республикипе тулай чăваш вырăнӗсен кулленхи çыхăнăвӗсене йӗркелесе ярасси, çыхăнусен йӗрне-çулне çирӗплетсе пырасси. Кунта сăмах хурăнташлăх, вӗрентӳ, культура, суту-илӳ, укçа-тенкӗ, экономика пирки тата ытти хутшăнусем çинчен пымалла. Сăмах «пӗрлештернӗ савăтсен саккунӗпе» пурăнасси çинчен. Нумай енлӗ, пысăк плансем, ӗççем, хутшăнусем палăраççӗ кунта. Патшалăх, район, ял, çемье, шкул, хуçалăх тата ытти тӗрлӗ шайлă, тӗрлӗ сийлӗ хутшăнусем йӗркеленме тивӗç. Ахăртнех, малашне тӗрлӗ килӗшӳсем (договорсем) анлăрах сарăлма тивӗç.

Тӗслӗхе, чăваш вăй питтисене вăхăтлăх тата вăрахлăх ӗç вырăнӗсем тупса парасси пирки шутласа пăхăпăр. Чăваш Республикин çӗр хӗсӗк тата çырма-çатраллă пирки хресчен е фермер хуçалăхӗсем аталанма пултараймаççӗ. Ялсен пӗрлешӳллӗ хуçалăх мелӗпех пурăнма тивет, кашни киле ят çӗрӗ 2–3 ана уйăрса панипе сухапуç патне таврăнатпăр, XXI ӗмӗре мар, XIX ӗмӗре кӗрсе каятпăр. Республика Президенчӗ ӗççӗрлӗх пăшăрхантарни пирки каларӗ. Республикăри хресченсем кирек хăш ӗççи вахăтӗнче таврари (Чулхула, Рязань, Ярославль, Чӗмпӗр) хутлăхсене пинӗ-пинӗпе кайса ӗçлеççӗ. Акаççӗ, ӳстереççӗ, пухса кӗртсе параççӗ. Пăхаççӗ, кӗтеççӗ, сăваççӗ, патшалăха леçеççӗ. Мӗн ӗçлесе илет тарçа кӗрӗшнӗ чăваш? Икӗ хут сахалрах параççӗ.

Пин-пин чăваш Çӗпӗрте, Инçет Тухăçра вăрман касать, кăмрăк кăларать, чул хырать, çурт лартать, çӗр чавать, нефть уçлать. Укçалла, тарçăлла. Чăваш Правительствин хамăрăн ӗç вăйӗпе çапла усă курмалла мар. Ӗç вăйне вырнаçтармалли килӗшӳсем тумалла, ӗçшӗн ӗç укçи кăна мар, вăрман, кăмрăк, нефть, мамăк илсе тăмалла.

Чăваш наци конгресӗ аякра ӗçпе е ӗççӗр çӳрекен кашни ентеше, кашни тăвана шута илме пултарӗ. Тăван çӗр, тăван кил, тăван халăх ăшшине, хӳттине кирек хăш лайăх е начар тăван та ӗмӗрӗпех пӗлсе тăтăр, шантăр, чунӗпе ан хуçăлтăр. Вара тин чăваш хăйсене мӗскӗн тесе шутламӗ, хăй камне пытарма тăрăшмӗ.

Тулай чăвашра парлак хирсем, парлак кил вырăнӗсам сахал мар. Самар облаçӗнчи Йӗкӗр ялӗнче, Пушкăртстанри Çирӗклӗре е Кайрăклăра, Удмуртри Пархатарта е Пенза облаçӗнчи Итӗм Курара, Сарă ту облаçӗнчи Калмантайра – таçти тулайра та ялсем пушаннине вăтăр çул ытла курса çӳрерӗм. Чăваш çӗрӗ ниçта та пăрахăçа тухмалла мар. Вӗсене Чаваш Республикинчи тăвансене куçса пыма памалла. Ӗлӗк тулая чăвашсем Атăл çинченех куçса кайнă. Ун чухне тӗн пусмăрӗ, нуша хутаçӗ хавалана. Халӗ çав тӗп ялсенченех килӗ-килӗпе уйрăлса пырса, авалхи тăванлăха çӗнетес вăхăт çитрӗ. Çӗнӗ çемьесемпе пӗрле ача-пăча, шкул, хаçат-журнал куçса пырӗ. Тачă хутшăну вăйланӗ. Ют çӗре никамăн та каяс килмест. Çавăнпа тăванлăх йӗрне чӗртни кирлӗ.

Чăваш наци юхăмӗн малашлăхне тулай чăвашсем пурăнакан пӗтӗм облаçсем, республикăсем, хуласем пӗр-пӗринпе экономика, культура, вӗрентӳ, спорт тата ытти ыйтусемпе хытăрах хутшăнса ӗçленинче кăна куратăп. Пушкăрт, Тутар республикисен, Самар, Пенза, Чӗмпӗр, Кемӗр, Мускав, Тюмень, Оренбург облаçӗсен тата ытти облаçсен администрацийӗсемпе Чăваш Республикин договорсем туса ӗçлеме килӗшни паллă. ЧНК çак ӗçре Шупашкарти, çав вырăнсенчи чăваш пӗрлӗхӗсем урлă тӗп генератор пек кӗрлемелле. Ку енӗпе Пушкăртстанри Чăваш культурин пӗрлӗхӗпе Пушкăртстан Республикин Президент аппарачӗ, Самарти «Пехил» пӗрлӗхпе облаç администрацийӗ, Кемӗр облаçӗпе унти чăваш пӗрлӗхӗ килӗштерсе пысăк ӗç тунине ырă тӗслӗх вырăнне асăнма пултаратăп. Чӗмпӗр облаçӗн, Чӗмпӗр хулин администрацийӗсем чăваш культурипе çутлăх обществине ырă сунмаççӗ тесе каласан йăнăш пулӗччӗ. Çав хушăрах Чӗмпӗрти чăваш шкулӗн шăпи кӗтнӗ пек таталмарӗ. Ăна тӗрӗс татса парас ӗçе, пиççе çитнӗ ӗçе, Чăваш Республикин кивӗ влаçӗ юри тенӗ пекех пăсса хучӗ – культура училищи уçтарчӗ. Халӗ вара «туса парăр» тесе ларнипе çитмест. Чăваш çыннисенех çанна таварас пулать. Пурлăх енчен те тăкакланма тивӗ, специалистсене те хамăрăн тупас, ӗçе кӳлес пулать. ЧНКн тӳрӗ тивӗçӗ – тулайри вӗрентӳ заведенийӗсен системине тӗплӗ тишкерсе палăртасси, меслет пулăшăвӗн тытăмне туса хурасси.

***

Тепӗр ушкăн ыйту – ватă, вăй питти, яш-кӗрӗм чăваша тăван йăла-йӗрке, ӗрет-хисеп, ниме, уяв-пуху урлă пӗрлештересси (кунта питӗ анлă ӗççем палăртма май пур: çулталăкри тата çемьери уявсем, самоуправлени тытăмӗ, социаллă хӳтлӗх ӗçӗ, халăх еткерӗн палăкӗсене упрасси, килçурта, яла-урама тирпейлессм, ниме бригадисем тăвасси тата ытти те).

Ентешсем йышлă пурăнакан çӗрте çак ӗççене йӗркелеме çăмăлрах. Тутарстанри Кăнна Кушкипе Теччӗ, Пушкăртстанри Ӗпхӳпе Слакпуç, Чӗмпӗрпе Чăвашкасси е Анатрал, ытти нумай-нумай вырăнта чăваш халăхӗн паллă ӗçӗсене, пулăмӗсене, çыннисене асăну вырăнӗсем туса палăртма пуçларăмăр.

Пушкăртстанри чăвашсен культура пӗрлешӗвӗ Алексей Кондратьев академикпа Иван Тарасов журналист хытă тăнипе Иван Яковлев, Павел Миронов, Гурий Комиссаров, Андрей Петров-Туринге ячӗсене асăну хăмисемпе паллă тăвасшăн. Слакпуç 15 çул хушшинче тӗпрен улшăнчӗ. Унта К.В. Ивановпа Я.Г. Ухсай музейӗсем ӗçлеççӗ. Усăллăра (Услибашра) Максим Чалтун çыравçă музейӗ аван. Самарсем Стихван Шавли, Хветӗр Уяр, Оренбург чăвашӗсем Влас Паймен ячӗсемпе вулавăшсем уçма палăртнă.

Çак питех те кирлӗ юхăм пуçланать кăна-ха. Вăл кашни ял-хулана

çитмелле. Хальлĕхе çĕр çинчи чăваш ялĕсене шута илсе пĕтеретпĕр. Самар, Чĕмпĕр, Пенза, Тутарстан, Пушкăртстан енчи тата ытти çĕрти ялсене йăлтах шута илнĕ, унта ĕлĕк миçе чăваш шкулĕ пулнă, халĕ миçе шкул чĕртмелле е çĕнĕрен уçмалла — ĕнтĕ курăнса тăрать.

Ялсен историйĕ, районсен краеведени сăмахсарĕ (словарĕ), чăваш тĕнчин энциклопедийĕ майĕпен çырăнаççĕ. Çапах та çак ĕçе кашни кĕтесри тавра пĕлӳçĕсем, тĕпчевçĕсем, çыравçăсем хутшăнчĕç теме çукха. Иртнĕ суйлаври ЧНК делегачĕсем пурте хастар пулчĕç теейместĕп. Вĕсенчен чылайăшĕ «Памятка активиста ЧНК» анкетăна пурнăçламарĕ.

***

Чăваш ялĕсен, тавар тăвакансен, ĕç ушкăнĕсен татăклă (конкретлă) нушисемпе вырăнти влаçсем патне тухмалли çулсене уçса тăрасси – ЧНКн вырăнти тата Шупашкарти штабĕсен тĕтăш туса пымалли ĕçĕ. Банксемпе налуксен ĕçĕ, бюджетран диаспорăна тивекен пай, социаллă хӳтлĕх (ватăсем, чирлисем, ветерансем – йăлт шута илсе тăмалла!), çемьепе вĕрентӳ, ĕç тупасси – ЧНК тытăмĕнче паллă пулмалла, пирĕн вырăнти администраци умĕнче цифрăсемпе калаçма, танлаштарса кăтартма пĕлмелле. Ку енĕпе Самар облаçĕнчи Шунтал районĕн тĕслĕхне асăнатăп. Вĕсем районти чăваш çыннисен пурнăçне, нуши-савăнăçне витĕр ăнланса çитнĕ, ыйтăва мĕнле майсемпе татса памаллине пĕлеççĕ, хăйсен политикине çирĕп тытса пыраççĕ. Паллах, пуçаруллă çынсене унта та çăмăл мар, анчах чăвашлăх шухăшĕ вĕсене пĕр чăмăра пĕтĕçтерме пултарнă. Чăваш наци конгресĕн тата унăн вырăнти ушкăнĕсен тепĕр пысăк тĕллевĕ – пĕчĕккисем валли чăваш тĕнчине уçса парасси. Вĕт-шакăр ача-пăчапа шкул ӳсĕмĕнчи хунав ӳсĕм тăван чĕлхе, юрă-кĕвĕ, вăйă-кулă ырлăхне тупса савăнтăр.

Ялта та, хулара та тăвансемпе, палланă-пĕлнĕ çынсемпе пĕрлешсе, виçтăват ачана пĕрре пĕр килте, тепре тепĕр килте вылятса вĕрентекен харкам (личнăй) пахча-садик уçма май пур. Вырăнĕ тупăнас пулсан, ачасене йăпăрт пухăнса пĕрле выляса-кулса, калаçса-вĕренсе илмелли пĕчĕк вырсарни шкулĕсем уçни аван. Ансамбль, кружок, чăвашла вулавсем, ăмăртусем, вăйă картисем... Тытăнсан – тем те тума пулать. Кам тăвать? Хамăрăн тăвас пулать. Çыншăн мар, хамăршăн.

***

Пысăк е пĕчĕк ялта чăваш класĕсем, шкулсем уçасси те ялти çынсем хăйсем тумалли ĕç. Паллах, ял çыннине чăваш интеллигенцийĕ, ЧНК делегачĕсем, центрсем хытах пулăшмалла, вырăнтан хускатмалла. Чăваш ĕçлеме маттур, анчах ăс-хакăл вĕренĕвĕшĕн сӳрĕкрех тăрăшать. Пĕтермелле çавна. Чăваш вырăса тухса пынине хирĕç «ЧĂВАШ ТĔНЧИНЕ» йĕркеленипе кăна кĕрешме пулать.

Чăваш тĕнчине тумалли мелсем тĕрлĕ. Вĕсенчен пĕрне – чăваш общинине – Пушкăртстанри культура пĕрлĕхĕ Кармаскалă районĕнчи чăваш ялĕнче йĕркелесшĕн. Питĕ ырă тĕллев! Унта тăван чĕлхе янăрĕ, чăвашла усравăш, шкул, таврари ялсенчен пухăннă маттур ачасен лицейĕ, хăйсен театрĕ, кĕскен каласан – чăваш ăс-хакăлĕн тĕнчи уçăлмалла. Ку – вырсарни шкулсенчен чылай çӳлти пусăм, пули-пулми вырăс-чăваш шкулĕсенчен расна! Тĕслĕхшĕн те пулин тăвасчĕ чăваш общинине!

Чăвашăн талантлă çыравçисем, ӳнерçисем, юрăçисем тата ытти ăстисем çурри ытла тулайран тухнă. Халăхĕ çурри ытла тулайра. Халĕ мĕн вара? Талантлă ертӳçĕсем, тĕрĕ-эреш ăстисем, вĕрентӳçĕсем, купăсçăсем, сиплевçĕсем тата пин-пин ăста тухать-и тулайран? Шкулсăр, тăван çырулăхсăр, клубсăр, вулавăшсăр лапракассисенчен-и? 18-мĕш ĕмĕрти çул çӳревçĕсем пек чăвашла-вырăсла кукăртнă çырусене куратăн та куççуль тухать – чăваш чĕпписемшĕн И. Яковлев та, çĕнĕ çырулăх та çуралман иккен-ха! Ĕпхӳре, Чĕмпĕрте, Мускавра, Самарта, Тюменьре, Итĕм Курара, Шунталра, Аксура, Чистайра, Питĕрте, Вольскра тата ытти çĕрте чăваш лицейĕсем, гимназийĕсем кирлĕ. Вăтам шкул никĕсĕ çинче таврари пултаруллă чăваш ачисене аслă шкула хатĕрлекен классем тумалла! Халăхăн аслă ачисене пăхса ӳстермесен XXI ĕмĕрте пуянсен ухмах ачисене патшана лартăпăр-и? Регионсенче хăйсен культура, педагогика, медицина, музыка, театр студийĕсем, училищисем, техникумĕсем пулнă. Вĕсене чĕртмелле. Шел те, хальхи çынсем хăйсем патĕнчех çавăн пек чаплă вĕренӳ заведенийĕсем пуррине ас тумаççĕ. Похвиçнĕ районĕнчи Вăта Эверкелте медицина училищи ĕçленĕ. Ыйтатăп çынсенчен: ăçта пулнă вăл, хăш çуртсенче? Тен, упранса юлнă? Çук, пĕлекен тупăнмасть! Вĕрентӳ, культура ĕçĕн меслет центрĕсем тулайра тăвасахчĕ. Сăмахран, Салель ялĕ ку енĕпе ик-виç районшăн меслет центрĕ пулса тăчĕ. Унăн опытне сармалла, шкулне татах аталантармалла. Чăнлă районĕнче (Чĕмпĕр), Аксу хутлăхĕнче (Тутарстан), Меселпуçĕнче (Пушкăртстан) хаpermission тесен халь ачасемшĕн лицейсем, вĕрентекенсемшĕн ăсталăх курсĕсем уçма юрать. Çак ĕçе йĕркелесе яма пире пĕр вичкĕн инспектор – Золотницкипе Яковлев ĕçне тăсакан кирлĕ. Тытăнсан – ЧНК ку ĕçе йĕркелесе яраять. Халĕ ирĕклĕ вĕрентӳçĕсем самайланчĕç. Вĕсене ĕç тупса пани пулĕ çакă.

***

ЧНКн тепĕр ушкăн тĕллевĕсем çинчен калас тетĕп. Сапаланчăк тулай чăвашĕсем инçет вырăнсенчи, ял-хуласенчи уйрăм çыннисене, çемйисене, ушкăнĕсене (вăл шутрах салтаксене, студентсене, эмигрантсене) хăйсене çывăх вырăнсенчи паллăрах чăваш центрĕсемпе тата Шупашкарпа тӳррĕн çыхăнтарса тăрасси, клубсен, ушкăнсен, ентешлĕхсен витĕмне кĕртесси, пĕр-пĕрин опычĕпе паллаштарасси, йывăр вăхăтра хӳтлĕх илмелле тăвасси. Ку ĕç-пуç «наци культура автономийĕ» текен мĕн пур майсемпе пулса пымалла.

Геополитика, экономика географийĕ енчен пăхсан чăвашсем никамран та катăк марри тӳрех курăнать. Ăçта вырнаçнă чăваш? Ылтăн вырăнсенче! Тыр-пул ӳстерсе, выльăх ĕрчетсе пурăнмалли çĕрсене вырнаçнă чăваш. Çавăнпа эпир Раççей тăрăх ирĕклĕн сарăлса пурăннишĕн хурланас çук. Савăнмалла! Пĕтĕм Раççей хутлăхне чăваш çыннисем хура ĕçпе çĕклесе тăраççĕ. Тен, хура ĕçпе кăна та мар?

Кирек ăçта пурăнсан та чăваш хăйне  килти пек хăтлă та ирĕклĕ, хӳтлĕхлĕ те яваплă туймалла. Хальлĕхе вара ют çĕрти кĕлмĕç пек ютшăнса, чĕмсĕрленсе, çухалса çӳресси пур. Тăванлăх чăмăртанăвĕ пирĕн халăхшăн ĕмĕртенпех пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Халĕ те пире çавă кăна хăтарса хăварма пултарĕ. Хĕçпе-пăшалпа эпир хамăр хушăри сутăнчăксене те пĕтерес çук. Тăванлăх вăйĕпе вара вилĕм умĕнче те аптраса ӳкмĕпĕр. Чăваш Республики тулашĕнчи чăваш тăван килĕ пуррине нихçан та ан мантăр. Тĕнче тăрăх çӳрекен чăвашсем те тăван çĕрĕ çинчен манмасан вăрăм ĕмĕрлĕрех пулĕç. Мĕншĕн еврейсем, тутарсем кирек ăçта та хăюллă, хиврĕ, малта? Сăлтавĕ таçта мар. Хамăрта. Хамăр хамăра хисеплеме, чăмăртанма пĕлни-пĕлменнинче.

Пысăкрах йышпа, ялпа хутшăнса пурăнакан тулай чăвашсен пурнăçĕ «наци территорийĕн автономийĕ» текен йĕркепе килĕшӳллĕ пулса пыни меллĕрех. Малтанах хура халăха тулайсен наци территорийĕ мĕн иккенне 30-мĕш çулсенчи Пушкăртстанра, Тутарстанра, Вăтам Атăл крайĕнче тата ытти çĕрте йĕркеленĕ чăваш ял канашĕсен (совечĕсен), чăваш районĕсен тĕслĕхĕсемпе çирĕплетсе каласа ăнлантармалла. Наци (чăваш) районĕсенче, ял канашĕсенче пĕтĕм ĕçе тăван чĕлхепе, тăван хаçат-журналпа, чăваш шкулĕсемпе вулавăшĕсем, клубĕсем урлă ăнаçлă туса пынине, чылай ялта педагогика, медицина, техника, ял хуçалăх училищисемпе техникумĕсем хастар ĕçленине фактсемпе çирĕплетсе памалла. Уи чухнехи опытран лайăххине илмелле, хальхи вăхăтра юрăхлине çĕнĕрен йĕркелемелле.

Кашни хутлăхрах (облаçра, районта, ялта) чăваш программине Раççей Федерацийĕнчи халăхсене аталантармалли Патшалăх программине кĕртессишĕн кĕрешмелле.

Халăхпа (обществăпа) патшалăх вăйĕсене пĕрлештерсе, татуллă килĕштерсе туса пырсан кăна наци нушисене татса пама пулĕ. Урăхла майпа пархатарлă аталану çулĕ тупăнмастех!

1926–1934 çулсенче Чăваш Республикинче тулайсен пĕр наци районĕ – тутарсен Шăнкартамĕ пулнă. Чăвашсен ытти республикăсемпе крайсенче миçе ял канашĕ, районĕ пулнине тĕрĕссипе шутлас пулсан, темиçе теçеткерен иртет. Вăтам Атăл крайĕнче хăйĕнче кăна ултă

район чăваш районĕ шутланнă, Пушкăртстанра – 2 район, 3 ял канашĕ. Тутарстанăн Атăлпа Кама хушши йăлтах чăваш районĕсенчен тăнă. Унта чăвашла райхаçатсем тухнă, чăваш вăтам шкулĕсем, ятарлă вăтам пĕлӳ шкулĕсем (техникумсем) ĕçленĕ. Чăваш театрĕсем тата! Халĕ театр мар, телепередача та çук! Вĕсем çав 250 наци районĕпе, 5 пин наци ял канашĕсемпе пĕрле 1934 çулта пĕтнĕ.

Халĕ те ирĕк памĕç-ха. Пурне те «Неделимăй Раççей» кирлĕ. «Неделимăй Раççей» вара, тĕрĕссипе, малтан «инородец», кайран «нацмен» ĕнси çинче тытăнса тăнă.

Наци территорийĕсен автономине тулай чăвашсем хушшинче йĕркелесе ярасси – халĕ тума пултармалли ĕç мар. Ăна тума тулай чăваш хăй те хатĕр мар. Ку ыйтăва халăх та, вĕсен ертӳçисем те паянлăха ăнланса илеймен-ха.

***

Паянхи ăнланса тумалли ĕç – самоуправлени мелĕсене алла илесси. Кунта чикĕ пайласси çук, самоуправление – вырăнти хăй тытанлăха – вырăнти çыннăн, ялăн, хуçалăхăн интересне пĕрлештерсе хӳтĕлеме пĕлни кирлĕ. Вырăнти хай тытанлăх урлă тĕрлĕ халăх çыннисен хутшăнăвне тĕрĕс йĕркелеме май пур. Чĕлхе, тĕн, йăла, вĕрентӳ, культура, числăхпа хӳтлĕх прависене ĕçлеттерсе яма пулать. Халăх тĕрлĕ сийлĕ, анчах вăл ухмах мар. Хăйне хӳтĕлеме вăхăт çитсен, нуша чăмăртасан кăмăлĕ те, ăсĕ те самантрах кĕрлесе каять. Ирĕке туртса илекене пуç памĕ вăл. Анчах хăйсене лăпкăн улталаса кайнине сисмесĕр юлни чăваш халăхĕн тăтăшах пулать. Вырăнти ертӳçĕсем ăслă чухне шĕкĕр хулари патша ухмах пулни те хăрушă мар.

***

Чăваш наци конгресĕнче тепĕр чухне вырăс пусмăрĕ, вырăслану туртăмĕ çинчен сăмах тухать. Истори пире вырăс патшалăхне кĕртсе янă. Эпир нумайранпа Раççей гражданĕсем. Уншăн ӳкĕнмелле мар, савăнмалла та гражданлăх прависемпе туллин усă курмалла. Хальлĕхе эпир Раççей аллинче ятсăр е кача пӳрне вырăнне, тен, кача пӳрнин чĕрни вырăнне кăна йышăнатпăр. Анчах çав пӳрнене касса пăрахма е пăвса лартма тăрăшсан мĕн пулса тухнине Кавказ пăтăрмахĕ кăтартса тăрать. Пĕр пӳрнине касса пăрах, тепĕрне вара Раççейĕн чышкă чăмăртама алли те юлмасть. Валентин Урташ икĕ пӳрнепех вилĕмсĕр юрăсем çыратчĕ. Раççей Урташ мар вĕт. Çапăçма, ĕçлеме, ташлама-аталанма хăрах ура, хăрах алă, хăрах куç çителĕксĕр.

Ман шутпа, вырăс халăхĕ касмасть «инородецсене», Раççей тăшманĕсем ăна пирĕн çине вĕскĕртсе тăраççĕ. Вĕсем пĕтĕм Раççее Танлăх саккунĕ çинче аталантарассине хирĕç тăраççĕ. ЧНК 1992 çулта Чăваш Республики тулай тăвансем умĕнче нумай енчен яваплă пулнине палăртса хăварчĕ, çавăнпа наци политикипе ĕçлекен патшалăх комитечĕ тума сĕнӳ тăратрĕ. Унтанпа влаç тытăмĕ тĕпрен улшăнчĕ. Иртнĕ виçĕ çул çапла калама май парать: ЧНК çак функцие ăнăçлă тума пултарать. Ăна ЧР Вĕрентӳ министерстви, Культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерстви, Информаципе пичет министерстви уйрăмшаррăн туллин пурнăçлама пултараймаççĕ. ЧНК тулайсемпе ĕçлемелли пысăк çĕклеме хăй çине илме пултарчĕ. Эппин, патшалăхăн ЧНКн çак витĕмне шута хумасăр тăма сăлтав пулмалла мар. Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров ЧНК Мăн Канашĕн пухăвĕнче ку ыйтупа ĕçлени çинчен евитленĕччĕ. Хуравĕ пулатех-тĕр...

Илĕпĕр пĕр пĕчĕк ыйтăва – Шупашкарта тухакан чăвашла хаçатсене республика тулашне салатассине. Çĕр-шыв каталогне кĕме самаях хушса тӳлемелле. «Хыпар», сăмахран, каталогра çук. Е адрессем тăрăх илмелле – кашни номершĕн тепĕр икĕ хак ытла хушса тӳлемелле (500 т.) Япали пĕр сум, çул укçи – иккĕ!

«Тантăш» хаçат тăватă региона – Тутара, Пушкăрта, Чĕмпĕрпе Самара – номерсене карттăчкăсем тăрăх ярса тăрать, унти почта тытăмĕпе уйрăммăн калаçса татăлнипе тупнă ку меслете. Вăл та чăрмавлă, анчах вулакана кăштах çăмăллăх парать. Атăлпа Урал тăрăхĕнче, тĕплĕ калаçса татăлса, ятарласа каталог тума май пур. ЧНКн çак ĕçе хăй çине илмелле. Мелне тупмаллах. Чăваш хаçачĕсен редакторĕсем, журналисчĕсем темиçе хут та хăйсене валли уйрăм вĕренӳ-семинар йĕркелесси пирки сăмах хускатрĕç. Сăмахран, Иван Тарасов (Ĕпхӳ), Валентин Калмыков (Самар) журналистсен чăвашла вĕренĕвĕ кирлех теççĕ. Ман шутпа, эрнелĕх, ик эрнелĕх семинар е практика вĕренĕвĕ Шупашкарта е, ытах кирлĕ пулсан, Мускавра та йĕркелеме пулатех. Журналистсен союзĕпе Пичет миниистерствишĕн ку ĕç, ман шутпа, кулленхи ĕç шайĕпе ирттермелĕх кăна, йывăрлăх кăларса тăратакан пулăм мар.

Влаç органĕсене тулай чăвашсенчен çын уйăрса лартасси, суйлавсенче депутат вырăнĕсене илесси – татса паман ыйту. Наци районĕсен, ялĕсен ăнкарулăхĕ çук пирки саккунпа хамăра тивĕçекен вырăна та такама парса яратпăр. Эппин, халăхпа ĕçлеместпĕр. Пытармасăр каласан – ЧНК Канашĕн ялан тенĕ пекех «поздни зажигани» текенĕ палăрать. Депутат вырăнне илесси – хăть Хусанта, хăть Самарта – питĕ çивĕч кĕрешӳ: укçа та, ăсталăх та, сĕмсĕрлĕх те, чеелĕх те, ултав та... мĕн кăна явăнмасть унта! Суйлав – тĕлĕнмелле пысăк шкул... Вăл шкула кайиччен нумай пĕлес, пухас, çавăрас пулать. Тулайсен çавă хальлĕхе çук. Пулать, ним мар пулать. Чăваш никамран та, нихăш енĕпе те катăк мар. Тытăнсан – ирттерет. Пур енĕпе те ирттерет.

1998 çулта И.Я. Яковлев çуралнăранпа 150 çул çитет. Çав çула Яковлев çулĕ тесе пĕлтерме палăртнă. Эппин, аслă вĕрентекенĕмĕр ячĕпе ĕçлеме тытăнмалла. Яковлев вулавĕсем, Яковлев кунĕсем тенĕрен – калаçу ун çинчен кăна мар, пĕтĕм чăваш ĕçĕ çинчен пымалла. Яковлев ячĕпех тулай чăвашра ĕлĕкхи колхоз театрĕсем пек чăваш театрĕсене уçмалла. Ан тив, малтанлăха вĕсем халăх пултарулăхĕн ушкăнĕсем пек, хăйсене хăйсем тăрантарса пурăнмалăх кăна пулччăр. Вĕренӳ заведенийĕсем уçассишĕн, чăваш класĕсемшĕн Яковлевла чăнласа кĕрешӳ пуçарăпăр. 150 çул ячĕпе чăваш шкулĕ е класĕ уçман чăваш ялĕ спискокра ан юлтăрччĕ. Чăваш тăк чăваш пулччăр, ни вырăс, ни чăваш, «ни рыба, ни мясо» пирĕн юхăмра пулма пултараймасть.

Çапла вара, тулайри е шалти – кирек хăш çĕрти чăвашсен ЧНКн çитес виççĕмĕш аслă пухăвĕччен Иван Яковлев халалĕсене пурнăçлассишĕн çанна тавăрса тепре çĕкленӳллĕн ĕçлеме тĕллев пур.

Тĕллеве пурнăçласчĕ.

Виталий СТАНЬЯЛ,
Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ.
*«Хыпар», 20.09.1995.*

## «УХМАХ, ПУРĂНМА ПĔЛМЕСТĔР» ТЕÇÇĔ ПУЛИН ТЕ

*Вăхăт сисĕнмесĕрех шăвать. Чăваш наци конгресĕн 2-мĕш Аслă пухăвĕ иртнĕренпе те, акă, вăхăт самаях иртрĕ. Шавлăн иртрĕ вăл. Çак тапхăрта республикăмăрта, çĕр-шывра чăвашлăхпа тӳрремĕнех çыхăннă тĕрлĕ ĕçсем пулса иртрĕç. Шухăшсене пĕтĕмлетме, малашлăхалла тинкерсе пăхма вăхăт пулчĕ. Çавна май вулакансем ыйтнипе «Хыпарăн» «çавра сĕтелĕ» хушшине паян ЧНК президентне А.П. Хусанкая тата вице-президентне В.П. Никитин-Станьяла йыхравларăмăр.*

**– Атнер Петрович, Виталий Петрович, калăр-ха, тархасшăн, Чăваш наци конгресĕн II Аслă Пухăвĕ умне лартнă тĕллевсем туллин пурнăçланчĕç теме пултаратăр-и? Делегатсемпе хутшăннă май «халăха усăсăр тапратса тухрĕç ку пухăва» тенине те илтме тиврĕ...**

**В.П.:** ЧНКн I Аслă пухăвĕ тĕл пулу пухăвĕ, хăйсене майлă курнăçу, паллашу уявĕ пулчĕ. Пĕр-пĕрне пĕлсе çитрĕмĕр темелле. Ку Пухăва ĕçлĕ пуху тăвасшăн пултăмăр. Хам енчен, эпĕ ЧНКн тулай чăвашĕсемпе ĕçлекен вице-президенчĕ пулнине кура, çырусем чылай ятăм, вырăнсенче туса ирттернĕ, ирттерме палăртнă ĕçсен отчетне хатĕрлесе илсе килме, конкретлă сĕнӳ-канаш хатĕрлеме сĕнтĕм. Пĕрисем – итленĕ, теприсемшĕн пирĕн сăмах пуш чан çапнă пек çеç пулчĕ. Конгресс Пухăвĕ вăл – шухăшсене пĕрлештермелли вырăн. Такам такама укçа, тавар, япала памалли вырăн мар. Кам шухăш тупма пултарнă, вăл пуйса кайнă, теприйĕ хăйсене кирлине асăрхамасăрах юлнă. Хамшăн тулай чăвашĕсемпе малашне мĕнле çыхăнура пулмаллине, мĕнле ĕçсем, утăмсем тумаллине ăнлантăм.

**– Конкретлӑ йышӑнусем турӗ-и II Аслӑ пуху? Халӑха пӗр-пӗринпе тӗл пултарни, пӗр-пӗрин асап-нушипе паллаштарни кӑна пулмарӗ-и?**

**В.П.:**Пытармасӑр каласан, Конгресс политика, экономика пурнӑҫне пырса тивекен пысӑкрах документ хатӗрлессе кӗтнӗччӗ. Ҫӗнӗ программа тумаллаччӗ, туса ҫитерейменӗмӗр. Камӑн тумалла? Манӑн, тӗслӗхрен, вӑхӑт питӗ хӗсӗк. Краеведени союзӗн ертӳҫин ӗҫне те туса пымалла (каллех тӳлевсӗр), шкул кӗнеки хатӗрлемелле. Программӑна тата пӗччен мар, ушкӑнпа ҫырмалла.

**А.П.:** ЧНК – патшалӑх тытса тӑракан пӗрлӗх мар, общество пӗрлӗхӗ. Конкретлӑ йышӑнусем ҫуралассие те ытларах вырӑнсенчи Чӑваш наци конгресне кӗрекен пӗрлӗхсен, юлташлӑхсен, культура вучахӗсен ӗҫӗнчен килет. Пуху – кулленхи пурнӑҫра пухнӑ пӗлӳпе паллаштарни, хутшӑнни. Сӑмах май, делегатсемпе калаҫнӑ хыҫҫӑн республикӑра е облаҫра пурӑнакан чӑвашсемех пӗр-пӗринпе питӗ те сайра-хутра тӗл пулни сисӗнчӗ. ЧНК тытӑмне тӗпрен улӑштартӑмӑр. Канаша унччен пек Чӑваш Республикин тӑвансене мар, ытларах тулай чӑвашӗсене явӑҫтарасшӑн пултӑмӑр. Чылай усӑ кӳме пултаракансем те пур вӗсен хушшинче: хуҫалӑх ертӳҫисем, район, хула администраци пуҫлӑхӗсен ҫумӗсем. Ҫӗнӗллӗ ӗҫлессе шанма май пур.

**– «ЧНК III Аслӑ Пухӑвне Пушкӑртстанра ирттерессӗ» текен сас-хура ҫӳрет...**

**А.П.:** Пуху мар, ЧНК Канашӗн анлӑ ларӑвне, 1993 ҫултах ҫапла йышӑнса хӑварнӑччӗ. Пушкӑрт Республикинчен, унти активистсенчен чылай килет ку ыйтӑва татса парасси. Чӗмпӗрте-и е Ӗпхӳре-и – курӑнӗ. Аслӑ пухусене вара ниҫта та мар, тӗп хуламӑртах ирттермелле. Мӗншӗнне ӑнлантарма кирлӗ те мар пулӗ.

**В.П.:** Ҫавӑн пек вырӑна тухса ирттерекен ларусене Чӑваш Республикин чӑвашсен ыйтӑвӗсене татса пама мар, вырӑнти, регионти проблемӑсене татса пама пулӑшас тӗллевпе ирттермелле. Лару ӗҫне кунтан Канашӑн 2–3 членӗн хутшӑнмалла. Ман шутпа, ҫулталӑкне пӗр лару ирттермеллех.

**– Каллех укҫа-тенкӗ ыйтӑвӗ тухса тӑрать мар-и? ЧНКна укҫа-тенкӗпе кам тивӗҫтерет?**

**А.П.:** Правительство 3–4 ҫынна ӗҫ укҫи тӳлемелӗх ҫеҫ уйӑрать.

**В.П.:** ЧНК фончӗ пур та, ӗҫлесе кайнӑ теме ҫук ун пирки.

**– II Аслӑ пухура хӑшӗ-пӗри укҫа-тенкӗпе пулӑшма пулнӑччӗ.**

**А.П.:** Хальлӗхе вӑл укҫа ЧНКн расчет счечӗ ҫине кӗмен. Пурӗ пӗр вӗсене кӗтсе лармалла мар, хамӑрӑн май-меслет тупмалла.

**В.П.:** Устав тӑрӑх ЧНКн тӗрлӗ енӗпе ӗҫлеме, предприятисем уҫма май пур. Культурӑшӑн, ҫут ӗҫӗшӗн, чӑваш аталанӑвне ӑнланса уншӑн ӗҫлекенсем кирлӗ. Вӗсене те пайта пултӑр, пире те пулӑшчӑр.

**А.П.:** Пуш уйӑхӗнче республика тулашӗнчи ӗҫлӗ ҫынсемпе ҫыхӑну йӗркелес, аталантарас тӗллевпе ЧНК ҫумӗнче бизнес-клуб йӗркелерӗмӗр. Пуҫлӑхӗ – ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗ пулнӑ А.Г. Аксаков. Хальлӗхе клуб вӑй илчӗ теме пултараймастпӑр-ха.

**– «Аталану» хаҫата тӳрремӗнех Валери Туркайпа ҫыхӑнтараттӑмӑр. Малашнехи шӑпи мӗнле пулӗ-ши унӑн?**

**А.П.:** Йӗркеллех пулӗ. 3-мӗш номере ЧНК Канашӗн анлӑ ларӑвӗ умӗн кӑларма палӑртнӑ.

**В.П.:** Хаҫат пирки тепӗр вариант пур. Паллах, никама пӑхӑнман, ирӗклӗ, уйрӑм хаҫат тухни лайӑхрах. Укҫа-тенкӗ ытларах тухса каять ҫеҫ. Ку енӗпе хӗсӗкрех пулать пулсан, номере «Чӑвашьен» хаҫатпа пӗр пулса хатӗрлеме май пур.

**– Наци конгресӗшӗн, халӑхшӑн Валери Туркай поэт ЧНК ертӳҫисем хушшинче пулманни пысӑк ҫухату пулмӗ-и?**

**А.П.:** Ӑна Канаш членне суйлама эпӗ хам сӗнтӗм. Вице-президент пулма килӗшмерӗ. ЧНКра кирлӗ, паллах, ун пек ҫынсем те, хирӗҫлеместӗп... Анчах хӑйӗн те пӗлӳ шайне ӳстерес пулать. Ӑс-хакӑл вӑйӗпе кӑна ҫӗнтерме пултаратпӑр эпир...

**В.П.:** Валерий Владимировичпа эп пуху умӗн те, хыҫҫӑн та калаҫнӑ. Унӑн нумай енне, ӗҫӗсене ырлатӑп. Ҫитменнине студент чухнерепех пӗлетӗп ӑна. Анчах кашни япалан, ӗҫӗн хӑйӗн вӑхӑчӗ мар-и-ха? Тӳрех пӗрремӗш хутран ҫиччӗмӗшне сиксе хӑпарма ҫук. Ерипен, картлашка хыҫҫӑн картлашка ярса пусмалла. Ҫакна ӑнланасшӑнах мар вӑл.

**– ЧНК ҫулӗпе Юхма Мишши ертсе пыракан ЧОКЦ ҫул-йӗрӗ хӑҫан та пулсан пӗрлешессе шанма май пур-и?**

**А.П.:** Кирлех-и ҫакӑ? ЧНКн хӑйӗн ҫулӗ, ЧОКЦӑн хӑйӗн ӗҫӗсем пур пулӗ.

**В.П.:** Чӑваш халӑхӗшӗн тӑрӑшас шухӑш-кӑмӑлӗ пур пулсан, пытӑр, ӗҫлетӗр, чармастпӑр.

## – ЧНКна «ура хурас» текенсем пур-и?

**В.П.:** ЧНКн тӑшман пур пулсан, вӑл – чӑваш халӑхӗн тӑшманӗ. ЧНК вӑл Станьялпа Хусанкай ҫеҫ мар. Халӑх пӗрлӗхӗ вӑл. «Ура хурасси» пӗр-пӗрне ӑнланманран, килӗштерменрен тухать ахӑр. Уйрӑм ҫын ниепле те кашнинех тивӗҫтерме пултараймасть.

**А.П.**: ЧНК парти мар. Тӗслӗхрен, ЛДПРа тӳрремӗнех Жириновскипе ҫыхӑнтараҫҫӗ. ЧНКна вара халӑх «суратнӑ», уйрӑм ҫын мар.

**В.П.:** Вырӑнсенче кашнин хӑйӗн проблеми, шухӑшсем, лидерсем. Эпир вӗсене хамӑра вӑйпа пӑхӑнтарма пултараймастпӑр, пулӑшатпӑр ҫеҫ.

**– Вӑл е ку лару-тӑрура е пӗр-пӗр ыйтӑва татса панӑ май йышӑну тунӑ чух халӑх сӑмахне итлемесӗр хӑварӑнни пекех туни пулкалать-и?**

**В.П.:** Хальччен вӗсене ытларах итленӗ. Вӗсем калас, сӗнес ӑслӑ шухӑшсене кӗтетпӗр, тимлӗ кӗтрӗмӗр. Сая кайрӗ. Паракансем нумай, ӗҫлекенсем сахал. Кӗте-кӗте ырӑ шухӑш та хывӑхланса каять мар-и? Хам шухӑша ҫине тӑрса ӗнентерме вӑхӑт ҫитрӗ пулӗ.

**А.П.:** Килӗшетӗп. Ӗҫлӗ, вырӑнлӑ сӗнӳсем нумаях мар. Пухура та ҫавах пулчӗ. Пӗр япала ҫинчен пин хут каланӑ, татах аса илетпӗр. Тӗслӗхрен, эпир вӗсен ыйтӑвӗсене татса парас тесе тӳрех Пушкӑрт е Тутар республикисен правительствисене ҫитейместпӗр вӗт-ха. Тӗрлӗ сферӑра килӗштерсе ӗҫлемелли, туслӑ пурӑнмалли ҫинчен калакан килӗшӳсене тӗпе хурса витӗм кӳме, кӑтарту пама пултаратпӑр ҫеҫ. Ыттине вырӑнта татса памалла. Вырӑнта лайӑхрах курӑнать мар-и?

**В.П.:** ЧНК укҫапа тивӗҫтереймест, хаҫат кӑларса, пырса шкул уҫса параймасть. Правительство, влаҫ мар эпир, укҫа, пурлӑх ҫук пирӗн. Пушкӑртсем пиртен пуянрах пурӑнаҫҫӗ, Чӗмпӗрсем, Чулхуласем икӗ хут ытларах укҫа илеҫҫӗ. Мӗнле пулӑшу пултӑр-ха пӗчӗк, хӗстерсе лартнӑ Чӑваш Республикинчен? 100–130 пинлӗ халӑх хӑй университет уҫма пултарать. Ҫав пушкӑрт е тутар чӑвашӗсенех хӑйсен университетне уҫма май тупмалла. Педучилищӗсем, пединститутсем пулмалла. Хальлӗхе факультетсене те аран-аран уҫатпӑр. Вырӑнсенче хамӑрӑн издательствӑсем пулмалла. Пулнӑ вӗсем пирӗн. Хупса пӗтернӗ. Халь пулнине аса илсе пурӑнатпӑр.

**А.П.**: Эпӗ урӑхларах шухӑшлатӑп. Ҫакӑ вӑл пирӗн ӗҫ ҫеҫ мар, федераци ыйтӑвӗсемпе ӗҫлекен патшалӑх органӗсен ӗҫӗ те. Шел, федераци суйлавне хутшӑнаймастпӑр е япӑх хутшӑнатпӑр. 1993 ҫулхи суйлав та ҫавнах кӑтартса пачӗ. ЧНК вӑйӗпе, витӗмӗпе Патшалӑх Думине чӑвашлӑха, чӑвашсене хӳтӗлеме пултаракан ҫынна тӑратмалла. Ҫук ун пек депутат пирӗн. Ҫавӑнпа ЧНК Раҫҫей халӑхӗсен пӗрлӗхне кӗчӗ. Ҫитес суйлавра активлӑрах пуласчӗ.

**В.П.**: Эп шанмастӑп вӑл Думӑсене. Халӑха пулӑшма мар, пусмӑрлаҫҫӗ ҫеҫ. Вырӑнта халӑх влаҫа, ҫӗре, укҫа-тенке хӑй аллине илмест пулсан Мускавран пулӑшу кӗтнин усси ҫук. Куланай кама паратӑн, мӗншӗн паратӑн, мӗн чухлӗ паратӑн – пӗлсе тӑмалла ҫакна. Суйлав вӑл халӑх куҫне тӗтӗм яни кӑна. Депутатсен халӑха тытса пымалла мар, халӑхӑн депутатсене кӑтартса тӑмалла. Хӑрамасӑр, памасӑр тӑма пултармалла. Ҫав вӑхӑт ҫитмесӗр нихӑш халӑх та ирӗклӗ пулаймасть. Тӑван халӑха пурӑнма вӗрентесси те ЧНК тӗллевӗ тесе шутлатӑп. Тулай чӑвашӗсене пырса тивет ҫакӑ ытларах, ытла та сапаланчӑк пурӑнаҫҫӗ вӗсем.

**– Чӑваш тӗнчи вӑйсӑрланни паян никамшӑн та вӑрттӑнлӑх шутланмасть пуль тетӗп. Чӑвашлӑх вӑй илесси тулай чӑвашӗсен хушшинче пуҫланӗ тенине хирӗҫлемӗр-и?**

**В.П.:** Чăваш тени çурри ытла республика тулашĕнче пурăнать. Мĕншĕн хирĕçлес? Пулĕ те. Анчах хăйсем те питĕ йывăррăн, тĕлсĕррĕн сывлаççĕ вĕсем хальлĕхе. Чăвашла вуламаççĕ, шкулсем, музейсем уçаймаççĕ.

**– Çав вăхăтрах шурă Шупашкарăмăрта наци лицейĕсем таранах уçăлчĕç, пурĕ пĕр чăвашлăх сулмаклăн ярса пуснн сисĕнмест...**

**В.П.:** Вырăсланать теççĕ. Вырăсланасси пирки мар, чăвашлăх пуянлăхне пĕлесси, упрасси çинчен калаçмалла. Французла, нимĕçле, акăлчанла пĕлччĕр, хамăрăнне те ан сивлеччĕр, юратчăр. Ют çĕр-шывра пурăнса курнисем тăван халăха, чĕлхине ытларах хисеплеççĕ, кунтисем – айккинчине. Хамăр çине урăх çын куçĕпе пăхма вĕренмелле.

**А.П.:** Чăвашлăхпа кăна хупăнса лармалла теместпĕр эпир. Хамăра хамăр хак памалла малтан. Хамăн пурнăçран илсе калатăп. Кунта пурăннă чух мар (кулленхи пурнăç тесе шутланă-тăр), Ленинградра вĕреннĕ чух интересленсе кайрăм тăван чĕлхепе.

**– Эсир – халăх «тарçисем», ялан ĕçре, халăх хушшинче. Çемьери хутшăнусене, лару-тăрăва çивĕчлетмест-и çакă? Сире ăнланаççĕ-и çывăх çыннăрсем?**

**В.П.:** Арăм чăваш ман. Ачасемпе килте чăвашлах калаçатпăр. Шел, чăваш шкулĕнче вĕрентеймерĕм вĕсене... Кунĕ-кунĕпе, эрни-эрнипе çухалса çÿреме тивет халăх ĕçĕпе. Тав вĕсене, ăнланаççĕ мана, пулăшаççĕ, пăхаççĕ, çитереççĕ. Ăнланман пулсан киле те кĕртмĕччĕç...

**А.П.:** Арăм манăн – бурят хĕрĕ. Ывăл та, вăл та чăвашла калаçаймаççĕ, ăнланма ăнланкалаççĕ. Аннепе чăвашла ĕнтĕ. Ывăл халĕ Мускаврa вĕренет. Арăм та Мускава ĕçлеме вырнаçрĕ. Тĕрлĕ пулать. Килте сахал пулни, пушă вăхăт çукки йывăрлатать лару-тăрăва. Кÿренеççĕ паллах. Сăмахпа вăрçса та илеççĕ. Тĕрĕс ку. Петĕр ывăлăм ăнланать мана, яланах хÿтĕлет...

**– «Пĕрре пурăнатпăр вĕт-ха, мĕн нушаланас, хамшăн пурăнас» тесе алă сулас килмест-и хушăран?**

**А.П.:** Малашлăха шанатăн-и, çук-и, тумаллах ку ĕçе. Шанчăк çук пулсан та ĕçлемеллех. Алă сулма çăмăл та – сулма юрамасть. Пултарнă таран, вăй пур таран ĕçлемелле. Ĕçĕ нумай. Виталий Петровичпа пĕр институтра ĕçлетпĕр. Ăслăлăх енĕпе тăрмашатăп, университетра та ĕç пур. Унччен поэзи пирки çыраттăмччĕ, халь чылайранпа çырман, вăхăт çук. Хамшăн çухату тесе шутлатăп çакна.

**В.П.:** Манăн шанчăк çирĕп. Халăхшăн ĕçленĕ çынсене ялан таптанă, ура хунă, кăкланă, пур пĕр çиеле тухнă вĕсем кайран. Хамăн та çавах пулчĕ: ĕçрен кăларса ячĕç, ĕçе илмерĕç, унтан çав çул çинех таврăнтăм пур пĕр. Ята варалама пултарни те, вилĕм те хăратмасть. Ачасем ÿсрĕç. Ĕçсем пĕрех юлаççĕ. Халăх пĕтмесĕр çак ĕç пĕтмест. Ăна «ухмах, пурăнма пĕлмест» теччĕр, пур пĕрех шухăш, идея вилĕмсĕр. Кирек хăш халăхăн та пур çавăн пек çынсем. Анчах «пулатăп, тăватăп» тени çеç мар, чунра пулмалла халăхшăн тăрăшасси. Çав юхăма пырса кĕнĕ эпĕ, тинех тухаймăп унтан. Сывлăх пултăр. Тĕнчен пуласлăхĕ çеç пултăр.

Лидия ФИЛИППОВА калаçнă.
*«Хыпар», 19.10.1995, 211№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН ПРЕЗИДИУМĔН ЙЫШĂНĂВĔ

### Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккунне пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккунĕ еплерех пурнăçа кĕрсе пынине пăхса тухса ЧНК Президиумĕ çапла йышăнать:

**1.** ЧăвашРеспубликин «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккунĕ Чăваш Республикинче пурнăçа тивĕçлĕн кĕрсе пыманни çинчен татăклăн пĕлтерес.

**2.** Чăваш Республикинче «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккун пурнăçа тивĕçлĕн кĕрсе пыманнишĕн чи малтанах Чăваш Республикин Президенчĕ тата ĕç тăвакан влаçăн структурисем айăплă иккенне палăртас.

**3**. Чăваш Республикин Президентĕнчен, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнчен «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккун пурнăçа еплерех кĕрсе пынине çывăх вăхăтрах тивĕçлĕ шайра пăхса тухса, унпа çыхăннă çитменлĕхсене палăртса хурса, тухăçлă мерăсем йышăнма тата çавăншăн айăплă çынсене палăртса явап тыттарма ыйтас.

**4.** Асăннă çак проблемăна мĕнле майпа йĕркеллĕрех татса парас тĕллевпе Чăваш Республикинчи Президенчĕпе Министрсен Кабинечĕн ЧНК президенчĕпе тата ЧНК Президиумĕн членĕсемпе тĕл пулма кирлине палăртас.

**5.** Ку йышăнăва пурнăçа кĕртессишĕн явапли пулма ЧНК вице-президентне В.П. Станьяла суйлас.

ЧНК ПРЕЗИДИУМĔ.
Шупашкар хули,
*1996 çулхи кăрлач уйăхĕн 23-мĕшĕ.*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ЧĔЛХЕСЕМ ÇИНЧЕН» САККУННЕ ПУРНĂÇА МĔНЛЕ КĔРТСЕ ПЫНИ

**(Тишкерÿ)**

Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕ 1992 çулхи пуш уйăхĕн 26-мĕшĕсенче республикăри вĕрентÿпе воспитани учрежденийĕсене Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккунĕ ыйтнипе килăшÿллĕн, чăваш чĕлхине тата культурине вĕрентес ĕç мĕнле пулса пыни тата ăна лайăхлатмалли мерăсем çинчен» постановлени йышăнчĕ.

Çак постановлени пурнăçа мĕнле кĕрсе пырать-ха? Ăна эпир тимлĕн пăхса тухăпăр.

1. Чăваш Республикин Вĕрентÿ, ăслăлăх тата аслă шкул министерстви Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккунне ĕçе кĕртес енĕпе çитменлĕхсене пĕтерес тĕллĕшпе васкавлă мерăсем йышăннă. Мĕнле ведомствăна кĕнине пăхмасăр, республикăри вĕренÿпе воспитани учрежденийĕсенче чăваш чĕлхине тата культурине вĕрентес ĕç мĕнле пулса пынине тата ăна лайăхлатассине тăтăшах пăхса пыраççĕ, «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккунăн 20 тата 21 статйисене пурнăçа кĕртеççĕ.

**«20 статья.** *Чăваш Республикинче шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсенче, пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулсенче, специальноçпа вăтам пĕлÿ, професси тата аслă пĕлÿ паракан вĕрентÿ заведенийĕсенче, республикăра тата унăн тулашĕнче пурăнакан чăваш халăхĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерекен специальноçсемпе квалификаци ÿстермелли системăра чăвашла тата вырăсла вĕрентеççĕ.*

**21 статья.** *Чăваш Республикин урăх чĕлхепе вĕрентекен мĕн пур вĕрентÿ заведенийĕсенче чăваш чĕлхине çак вĕренÿ заведенийĕсем мĕнле ведомствăна пăхăнса тăнине шута илмесĕр вĕрентеççĕ. Аслă вĕрентÿ заведенийĕсемпе вăтам пĕлÿ паракан вĕрентÿ заведенийĕсенче вĕренме кĕрекен абитуриентсен вĕренме кĕмелли экзаменсене чăвашла тытма право пур. Чăваш Республикин чăвашла вĕрентсе пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулĕсенче, çавăн пекех специальноçпа вăтам пĕлÿ тата аслă пĕлÿ паракан вĕренÿ заведенийĕсенче хăш-пĕр специальноçсене вĕренекенсемшĕн Чăваш Республикин Вĕрентÿ, ăслăлăх тата аслă шкул министерстви, тивĕçлĕ министерствăсемпе ведомствăсем чăвашла калаçма пĕлмелли шая палăртаççĕ тата чăвашла калаçма вĕрентес ĕçе йĕркелеççĕ».*

**2.** Чăваш Республикин Вĕрентÿ, ăслăлăх тата аслă шкул министерстви:

**а)** 1992–1993 çулсенче чăваш чĕлхине тапхăрăн-тапхăрăн вĕрентмелли пĕрлехи программа туса хатĕрленĕ тата шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен, шкулсен, училищĕсен, техникумсен тата аслă шкулсен учителĕсемпе преподавателĕсем валли методика пособийĕсем хатĕрленĕ;

**ă)** 1992–1993 вĕренÿ çулĕнче вăтам шкулăн вĕренÿ планне çĕнĕрен пăхса тухнă, унта чăваш чĕлхипе литературин сехечĕсен хисепне ÿстернĕ (халĕ эрнере 3 сехет);

**б)** вырăс чĕлхипе вĕрентекен шкулсенче чăваш чĕлхине вĕрентнĕ чухне классене ушкăнсене, И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче тата И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетĕнче вара филологи специальноçĕсен ушкăнĕсене çумушкăнсене пайланă;

**в)** чăваш чĕлхине вĕрентес тĕлĕшпе чи лайăх ĕçлекен учительсен

тата воспитательсен малта пыракан опытне вĕрентес, пĕтĕмлетес тата сарас тĕлĕшпе районсенчи тата хуласенчи методика кабинечĕсен тата пĕрлешĕвĕсен, учительсен пĕлтерĕшне пысăклатнă;

**г)** чăвашсем йышлăн пурăнакан ытти республикăсенче, облаçсенче (Хусанта, Стерлитамакра тата Чĕмпĕрте) педагогика аслă шкулĕсенче чăваш чĕлхипе литературин уйрăмĕсене уçнă е ушкăнне йĕркеленĕ;

**д)** чăваш чĕлхи енĕпе вĕренӳпе методика тата наука литератури пичетлесе кăлармашкăн Вĕрентӳ институтĕнче ятарлă методикăпа издательство центрне уçнă;

**е)** чăваш чĕлхи тата культури енĕпе ĕçлекен специалистсене хатĕрлемешкĕн, чăваш чĕлхин учебникĕсене, вĕренӳпе методика пособийĕсене тата словарьсене туса хатĕрлемешкĕн тĕллевлĕ майпа укçа-тенкĕ уйăрса памалли майсене палăртнă.

**3.** Республикăн Вĕрентӳ, ăслăлăх тата аслă шкул министерствин, аслă шкулсен ректорачĕсен, педагогика училищисен дирекцийĕсен Чăваш Республикин вĕренӳпе воспитани учрежденийĕсем валли квалификациллĕ кадрсем хатĕрлессине контрольлесе тăрас ĕçе вăйлатнă.

Хуласенче тата районсенче чăваш гимназийĕсене, лицейĕсене тата хальччен йăлара пулман ытти вĕренӳ заведенийĕсене уçас енĕпе малалла ĕçленĕ.

**4.** И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕ кашни çулах чăваш филологийĕпе культура факультетне вĕренме 100 çынран кая мар илет, И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх педагогика институчĕ филологи факультетне кашни çулах 50 çын йышăнать тата чăваш чĕлхипе культурине вĕрентес ĕç валли ăс-хакăл тата методика тĕлĕшĕнчен тивĕçлĕ условисем туса памалли ыйтусене хăвăрт татса парать.

**5.** Чăваш Республикин Пичет тата информаци енĕпе ĕçлекен министерстви чăваш чĕлхин учебникĕсене тата чăваш чĕлхипе çырнă учебниксене ыттисенчен маларах кăларма тăрăшать, вĕсен хисепне ӳстермелли майсене шырать.

*Анчах та Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккунне 1993–2000 çулсенче тата ун хыççăнхи тапхăрта пурнăçламалли патшалăх программи пур чухне те пурнăçа кĕрсе пымасть.*

Аяларах тĕслĕхсем илсе кăтартăпăр. Акă вĕсем:

**1.** Судра ĕçлекенсене, нотариат кантурĕсемпе арбитраж судĕнче ĕçлекенсене, адвокатсене, прокуратурăра ĕçлекенсене ĕçсене чăвашла çырма вĕрентессине йĕркелемелли вăхăт 1994–1995 çç. тапхăрсемпе çыхăнмалла пулнă. Вăл халĕ те пурнăçа кĕмен.

**2.** Патшалăх влаçĕпе управлени органĕсенче, çавăн пекех мĕн пур учрежденисенче, предприятисенче тата организацисенче ĕç хучĕсене чăвашла çырмалла тăвас тĕллевпе бланксене, формулярсене тата пичетлекен ытти продукцие халĕ те хатĕрлемен.

**3.** Пĕлӳ илни çинчен калакан документсене (аттестатсем, дипломсем т.ыт.те) чăвашла тата вырăсла çырса парассине йĕркелемен.

**4.** Министерствăсемпе ведомствăсене, вырăнти администрацисемпе Думăсене, Пухусене, ытти учрежденисемпе организацисене чăваш шрифчĕпе пичетлекен машинкăсемпе (е компьютерсемпе) нумай çĕрте тивĕçтермен.

**5.** Чăваш диалект чĕлхине тĕпчес тата çырса хатĕрлес çĕрте пурнăçа кĕмен ĕççем нумай:

**а)** Чăваш Республикин тулашĕнче чăвашсем йышлă пурăнакан регионсене кайма диалектологи экспедицийĕсем йĕркелемен;

**ă)** диалект словарĕсем хатĕрлемен, диалект тексчĕсене пичетлемен.

**6.** Хальхи чăваш терминологине йĕркене кĕртмен тата унăн çĕнĕ нормисене пăхса тухман.

Отрасльсен терминологи словарьне туса хатĕрлемен (ятарлă списокпа).

**7.** Чăвашла грампластинкăсем, диафильмсем, диапозитивсем тата видеокассетăсем кăларассине ӳстермен.

**8.** Справочниксене, географи карттисене тата çул ертмĕшсене (чи малтан Чăваш Енре çӳреме), çав шутра вĕренӳ карттисене патшалăх чĕлхисемпе пичетлеме халĕ те тытăнман.

**9.** Чăваш диаспорин наци культура интересĕсене тивĕçтерекен программăсем валли Федераци (РФ) бюджечĕпе ытти бюджетсенчен укçа-тенкĕ уйăрмалли механизма палăртман.

**Юлашкинчен çакна палăртмалла:**

**1.** Республика бюджетне йĕркеленĕ чухне, çак программăн уйрăм пункчĕсене кăтартса панă сроксемпе килĕшӳллĕн пурнăçа кĕртмеллине шута илсе, тивĕçлĕ укçа-тенкĕ уйăрман.

**2.** Чăваш Республикин мĕн пур саккун актне чăвашла куçарман.

*«Хыпар», 8.02.1996, 26№.*

## «ТЕН, НАЦИ ИДЕОЛОГИЙĔ ÇУРАЛМАН ТА...»

*ЧР Патшалăх Канашĕн XVII сессийĕнче пăхса тухма тăратнă ыйтусен хушшинче «Чăваш наци конгресĕн статусĕ» саккун проекчĕ те пулнă. Пурте пĕлетпĕр – ăна йышăнман.*

*Пуриншĕн те паллă: икĕ миллионлă чăваш халăхĕн çурри республика тулашĕнче пурăнать. Ку тарана çитсе те çав йышпа ĕçлекен, унăн интересĕсене патшалăх енчен хӳтĕлекен орган çук республикăра. Обществăлла майпа ĕçлекен ЧНК Раççейри мĕн пур регионти чăвашсемпе тачă çыхăнса ĕçлет пулсан та – унăн вăйĕ çитеймĕксĕр тата татса паман  ыйтусем те суксе тухаççĕ. Çавăнпа ЧНК çинчен çак вăхăтра саккун питĕ кирлĕччĕ. Анчах та сессие хутшăннă 41 депутатран 12-шĕ çеç асăннă саккун кирли пирки сасăланă. Çапла, чăвашсем чăвашлăх ĕçĕшĕн хирĕç сасăласа тĕнчене тĕлĕнтерчĕç. Çак пулăма ЧНК президенчĕ* ***А.П. Хусанкай*** *акă мĕнлерех хаклать:*

– ЧНКн, ытти общество пĕрлешĕвĕсемпе танлаштарсан, статусĕ урăхларах пулмалла тесе шутлаттăмăрччĕ. Хальхи йышлă партисенчен пĕтĕм чăваш халăхне пĕрлештерсе тăракан организаци пулнипе уйрăлса тăрать. Эпир çав саккуна йышăнса унăн право никĕсне хывасшăнччĕ. Чăваш халăхĕн тĕнчери пĕртен пĕр патшалăх тытăмĕ Чăваш Республики – чăваш аталанăвĕшĕн явапл. Ун пек тĕслĕхсем пур. Сăмахран, Коми Республикинче. Унта «Коми халăхĕн пухăвĕ» ятлă организацин статусне Конституцире те – Тĕп саккунра – палăртса хăварнă. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, ытти республикăсенче те патшалăх тытăмĕсем пĕтĕм нацие пĕрлештерекен организацисене пулăшса тăраççĕ. Хăй вăхăтĕнче, тĕрĕсрех, 1992 çулта, Чăваш наци конгресне ЧР Аслă Совечĕн пуçарăвĕпе йĕркелесе янă. Унтанпа патшалăх тытăмĕсем улшăнчĕç, урăх çынсем килчĕç. Раççей Федерацийĕн Конституцийĕнче вырăнти саккунсем тĕнче правипе килĕшсе тăмаллине палăртнă. Тĕнче правипе килĕшӳллĕн, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставне, Пĕтĕм тĕнчери экономикăпа социаллă пурнăç тата культура прависем çинчен калакан пакта, Гражданлăх, политика прависем çинчен калакан пĕтĕм тĕнчери пакта тата ыттисене те кашни халăхăн ирĕклĕ аталанăвне çирĕплетекен статьясем кĕртнĕ. Эпир те çавăн пек организаци – ЧНК – туса хутăмăр. Ăна та, тĕнче правипе килĕшӳллĕн, саккунпа çирĕплетмелле. Пирĕн çынсем тĕнче правипе паллашманни те, политика тĕлĕшĕнчен айванрах пулни те асăннă саккуна йышăнма чăрмантарчĕ пулас.

**– Халь мĕнлерех лару-тăру ЧНКра?**

– Чăваш наци конгресĕ – тĕнчери тĕрлĕ организацисен тулли правallă членĕ. Сăмахран, Тĕнчене тухайман нацисемпе халăхсен организацийĕн, тĕнче шайĕнче иртекен ытти форумсен ĕçĕсене хутшăнатпăр. Урăхла каласан, тĕнчере пире йышăнаççĕ, кунта, хамăр тăван республикăра, Патшалăх Канашĕн ăнланулăх çитеймерĕ.

**– Çакна депутатсем тĕнче прави тата политика тĕлĕшĕнчен айванрах пулнипе çеç çирĕплетме пулать-и?**

– Депутатсен йышне илсен, ман шутпа, чăвашлăхшăн тăрăшакансем питĕ сахал. **Патшалăх Канашĕ пĕр партин, калăпăр, коммунистсен, шухăшне тытса пыма тăрăшать. Анчах та пĕр парти шухăшĕ, вăл мĕнле ырă пулсан та, чăваш халăхĕн пĕтĕм шухăшне палăртаймасть. Патшалăх Канашĕ вара пĕр парти органĕ мар, унăн тĕллевсем анлăрах пулмалла. Саккуна сӳтсе явнă чухне хăш-пĕр депутат чăваша кураймманни те палăрать.**

**– Тен, массăллă информаци хатĕрĕсен айăпĕ те пур: саккун проекчĕпе депутатсене анлăн паллаштарайман, сӳтсе явман?**

– Вăл та пур. Хамăр та çине тăрсах ĕçлемен пулĕ. Патшалăх Канашĕнче ЧНК Канашĕн çыннисем, вице-президент таранах, пур: Л. Кураков,

В. Тимофеев, Г. Архипов, А. Леонтьев. Вĕсем хастартарах пулнă пулсан, тен, урăхларах килсе тухнă пулĕччĕ. Эпĕ асăрханă тăрăх, юлашки вăхăтра Патшалăх Канашĕ чылай ыйтăва йĕркеллĕ сÿтсе явмасăр сесси ĕçĕн кун йĕркине кĕртсе е йышăнать, е йышăнмасть. Малтанхи суйлаври депутатсем хушшинче вăл е ку ыйтусемпе анлă, усă тавлашусем пулса иртетчĕç. Тĕрлĕ енсем пĕр-пĕрне ăнланма, килĕшÿсем патне çитме пултарнă. Саккунсене йышăннă чухне халăхра, обществăра çÿрекен тĕрлĕ шухăш палăрмаллах.

**– «Чăваш наци конгресĕн статусĕ» саккуншăн депутатсем пурте сасăламарĕç. Каярах çак ыйту патне таврăнатăр-и?**

– Паллах. Тен, хăш-пĕр вырăнсенче улшăнусем пулĕç.

**– 1994 çулхи суйлавччен ЧР Аслă Советĕнче 200 ытла депутатчĕ. Хальхинче вара вĕсен йышне пĕчĕклетсе, профессиллĕ майпа ĕçлекенсене çул панă темелле. Тем тесен те, 200 çыннăн 200 шухăш пулнă. Йыша пĕчĕклетни обществăри тĕрлĕ ушкăнсемпе сийсен шухăш-кăмăлне анлăн палăртма чăрмантарать. Эсир мĕнле шутлатăр?**

– Палăрать вăл. Хальхи депутатсем хушшинче пултарулăх интеллигенцийĕ çукпа пĕрех. Патшалăх Канашĕ обществăн тĕрлĕ шухăшне палăртакан орган пулмалла. Малашне ун пирки шухăшламалла. Ытти республикăсенче пулнă май çакнашкал танлаштару тума пулать: пирĕн патшалăх шайĕнчи влаç тытăмĕсен пĕр шухăшлăх çитмест. Нумай япала çавăнпа пурнăçланаймасть. Калăпăр, халь те пирĕн çĕнĕ Конституци çук. Ун пирки никам та шарламасть. Тăватă проекта хаçатсенче пичетлесе кăларнă, халĕ таçта выртаççĕ. Саха-Якути, Тутарстан, Пушкăртстан, Коми, Бурят, Тыва республикисем тахçанах йышăннă хăйсен конституцийĕсене. Эпир яланах хамăрăн тĕп шухăшсем пирки калаçса татăлма пĕлместпĕр, ытларах вак-тĕвекпе вăхăта иртеретпĕр.

**– Чăвашăн сÿрĕклĕх тымарĕ мĕнре-ши, ĕçта-ши?**

– Кашни патшалăхăн хăйĕн наци идеологийĕ пулмалла. Эпир ăна чăвашлăх сăмахпа палăртма пултаратпăр. Ку енĕпе Чăваш Республики, унăн гражданĕсем çирĕп позици тытмалла. Пушкăртсемпе тутарсенех илер. «Пушкăрт, тутар позицине» вĕсем тыгса тăраççĕ, президент-и, Патшалăх Канашĕ-и – ку ыйтупа тавлашу çук вĕсен. Эпир, ман шутпа, наци шухăшлавне, идеологине кирлĕ пек тăратайман, çĕклеймен. Наци интеллигенцийĕн те айăп пур ку енĕпе. Çĕн йĕркелÿ вăхăтĕнче те, кайран та вăл политикăран аяккарах тăнă е шикленнĕ. Тен, çавăнпа наци идеологийĕ, халăха пĕрлештерекенни, çуралман та пулĕ.

Надежда СМИРНОВА калаçнă.

## НАЦИ КОНГРЕСĔ КАМА КИЛĔШМЕСТ?

*ЧР Патшалăх Канашĕн XVII сессийĕнче республика пĕлтерĕшлĕ саккунсем нумай йышăнчĕç. Хăшĕсем – йывăрпа, теприсем çăмăллăнах çуралчĕç. Парламент ларăвĕнче патшалăхăн икĕ чĕлхинчен пĕри кăна янăрать пулин те – чăваш халăхĕн аталанăвĕ пирки сăмах хускалсан чăваш-депутатсем те кăштах та пулин йăшăлтатасси иккĕлентерместчĕ мана. Кĕтнĕ пек пулса тухмарĕ. Кун йĕркинчи «Чăваш наци конгресĕн статусĕ çинчен» саккун проекчĕшĕн 12 депутат кăна сасăлани маншăн пуçран кÿсекпе çапнă пекех пулчĕ. Мĕншĕн чăвашсемех чăвашлăха аталантарассине хирĕç тăраççĕ? Депутатсемпе хăйсемпе калаçса пăхма шутларăмăр.*

**Г.Н. Архипов, парламентăн Культура, вĕрентÿ тата пичет енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ:**

– Чăваш наци конгресĕ – 2 миллион чăваша пĕрлештерсе тăракан пĕртен пĕр организаци. Ăна хăй вăхăтĕнче ЧР Аслă Совет Президиумĕн йышăнăвĕпе туса хунă, ĕçна обществăлла йĕркепе туса пынă. Ку, паллах, çителĕксĕр. Наци ыйтăвĕпе халĕ тимлĕ ĕçлеççĕ. Саха (Якутии), Карел республикисенче, чылай облаçра ятарласа комитетсем йĕркеленĕ. Пирĕн вара çаплах тÿлевсĕр тертлентересшĕн. Тулашри чăвашсемпе чылай ĕçленĕ В.П. Станьял каланă тăрăх – малашне капла ĕçлеме май çук. Тĕрĕс калать. Çавна шута илсе пирĕн комитет ятарласа саккун проектне хатĕрлерĕ, сесси кун йĕркине кĕртрĕмĕр. Шел те, тухса калаçакансем хушшинче пурте вырăссем пулчĕç. Хирĕç çаптарчĕç. Пирĕн нушасенĕ «ăнланнине» кăтартрĕç. Пĕри те пĕр сĕнÿ тăратмарĕ. Иртнĕ тунти кунхи планеркăра саккунсене икĕ чĕлхепе (хăть йышăннă хыççăн та пулин) хаçатсене парас пирки калаçрăмăр. Ялан пĕр чĕлхене çÿле хунă пиркиех вырăссен аллине (сессисенче те ялан вырăсла шавлатпăр-çке, те çакă витĕм кÿнипе) кĕрсе ÿкрĕмĕр пулас. Вĕсем хуçа пулса тăраççĕ. Чăваш депутатсем çакна ăнланасшăн та мар, чăвашсемшĕн шухăшласшăн та мар пек туйăнать. Вырăссем хыççăн кайса сасăлаççĕ. Иртнĕ сессире те çапла пулса тухрĕ.

**В.А. Тимофеев, парламентăн Вырăнти самоуправлени тата общество пĕрлешĕвĕсем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ:**

– Паян республика тулашĕнче мĕн пур чăвашсен çурри ытла пурăнать. Патшалăх тумалли ĕçсене пĕтĕмпĕх ЧНК пурнăçласа пырать. Нумай чухне Наци конгресĕн çыхăнăвĕсем хыççăн пирĕн патшалăх экономика енĕпе килĕшÿсем тума тытăнчĕ. Тĕслĕхрен, малтан Тюмень облаçĕнче ЧНК уйрăмĕ уçăлчĕ, йĕркеллĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Нумай пулмасть унта республика делегацийĕ кайса килчĕ.

Пĕлетпĕр: Чăваш наци конгресĕнче халăха юратакан, чунĕсене паракан çынсем паян тÿлевсĕр ĕçлеççĕ. Çăмăл-и ку хальхи саманара? Хамăр республикăри уйрăмсене çитсе килме е телефонпа çыхăнма, вырăнсене çитсе халăхпа тĕл пулма укçа кирлĕ-çке. Кам умĕнче кĕлмĕçленмелле? Чĕмпĕр е Самар облаçĕсемпе укçасăр çыхăну тытмалли пирки каламастăп та ĕнтĕ. 2 миллионлă чăваш халăхĕпе ĕçлекен нимĕнле организаци те пулманнине шута илсе, Наци конгресĕн саккунлă статусне çирĕплетесшĕнччĕ. Республикăн мар, чăваш халăхĕн чи пысăк шайри представителлĕ органĕ туса хурас тĕллевпе. Уйрăммăн пулăшса тăмалла тесе кăтартса хăварасшăнччĕ.

Кам мĕнле сасăланине тĕплĕн пĕлместĕп-ха, çапах та пĕр вырăс депутачĕ майлă сасăланă пулсан та эпĕ ку хăйне майлă сенсаци тесех шутлатăп. Тÿрех калар: ЧНК ĕçне депутатсем начар пĕлеççĕ. Ăнланманнипе те хирĕç сасăларĕç пуль тетĕп.

Калаçса татăлтăмăр: тепĕр сессире ку ыйту патне тепĕр хут таврăнатпăр. Сессиччен, ман шутпа, ЧНК ертÿçисен хаçатсенче хăйсен ĕçне çутатса пама тăрăшмалла. Капла май килмесен чăваш депутатсене юлашки икĕ çул хушшинче тунă ĕçсемпе паллаштарни лайăх пулĕччĕ.

Иван КЛЕМЕНТЬЕВ калаçнă.
*«Хыпар», 21.03.1996, 59№.*

## ЧĂВАШ ЯТНЕ АН ÇĔРТ!

**(Чĕлхе политики пирки шухăшланă май)**

Хăтлă, пур енĕпе те аталаннă Чăваш Республики тăвасси пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç. Наци патшалăхĕ тăвас ĕç, культура шайне çĕклес, чăваш чĕлхи пĕлтерĕшне ÿстерес ĕç Чăвашра уйрăмах 20–30-мĕш çулсенче аталанса пынă.

«Çĕн йĕркелÿ» пуçламăшĕнче çак ыйтусем патне тепре таврăнтăмăр, Чăваш Республикин суверенитечĕ çинчен калакан, чăваш чĕлхине патшалăх статусне паракан саккун акчĕсем йышăнтăмĕр.

Суверенлă Чăваш Республикин – патшалăхăн хăйĕн экономика никĕсĕ пур: пурлăхпа финанс тытăмĕ, промышленноçпа ял хуçалăх вăйхăвачĕ, çĕр пуянлăхĕ тата çавăн пекех интеллект харпăрлăхĕ. Çак никĕс çинче патшалăх тÿре-шари (Президент, Патшалăх Канашĕ, ĕç тăвакан влаç тытăмĕсем) укçа-тенкĕпе налук, экономика политики, социаллă политика тытса пыраççĕ, ЧР гражданĕсем умĕнче хăйсен тивĕçне пурнăçлаççĕ. Патшалăх политикин тĕсĕсем нумай – хĕрарăмсем, çамрăксен, ача-пăчапа ватă çынсем енĕпе туса пымалли политика, культура политики т. ыт. те.

Анчах чăваш тÿре-шарин сăваплă пĕр тивĕçе нихăçан та асран ямалла мар. **«Чăваш Республики чăваш халăхĕн пĕртен пĕр наци патшалăх пĕрлешĕвĕ пулса тăрать. Чăваш чĕлхине наци чи пысăк пĕлтерĕшлĕ палли тата унăн пĕтĕм ăс-хакăл культурин иикĕсĕ вырăнне курса сыхласа хăварассишĕн, çĕнĕрен чĕрĕлтерсе аталантарассишĕн тăрăшасси Чăваш патшалăхĕн тивĕçĕ пулса тăрать»** («Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккун ум сăмахĕнчен).

Çак тивĕçе пурнăçланă чух тĕрлĕ шайри тытăмра ĕçлекен чиновниксен чĕлхе политикине тытса пымалла. Чĕлхе политикин пĕлтерĕшĕ – вышкайсăр аслă. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен пирĕн влаçăн хăй ертсе пыракан халăхпа унăн тăван чĕлхипе калаçмалла. Урăхла пулма та пултараймасть. Хăйĕн тĕллевĕсене ăнлантарнă чухне, ĕç программисене сӳтсе явнă чухне, саккунсемпе йышăнусене çирĕплетнĕ чухне Президентăн, унăн министрĕсен, депутатсен чăвашла тата вырăсла – патшалăхăн икĕ чĕлхипе – усă курмалла. Влаç тĕп халăхăн чĕлхине хисепе хумасть тĕк – вăл халăх шанчăкĕнчен тухать, ăна эпир пирĕн тăван çĕр-шыва таçтан персе аннă çичĕ ютпа анчах танлаштарма пултаратпăр. Чăваш çынни ун пек чух ĕлĕк-авал çапла каланă: «Тăванпала тăван калаçнă чух çичĕ ютăн мĕн ĕç пур?» Халăх влаçра ларакан çынсенчен ютшăнма тытăнать. Ун пек чухне патшалăха ертсе пырас ĕç, патшалăхăн пĕтĕмĕшле политики ăнăçлă пулас çук.

Чĕлхесем çинчен калакан саккунăн 3-мĕш пайĕн ячĕ – «Патшалăх влаçĕпе управлени органĕсенчи, учреждениесенчи, организацисемпе предприятисенчи чĕлхе» (7–18 статьясем). Шел те, çак статьясенчен нихăшĕ те пурнăçланса пымасть. Патшалăх тытăмĕнче (Президент администрацийĕпе ĕç тăвакан влаç органĕсем, саккун кăларакан влаç, правăна сыхлакан органсем, суд) чăваш чĕлхипе патшалăх чĕлхи шайĕнче, официаллă чĕлхе пек усă курмаççĕ. Вырăнти администрацисем пирки те çавнах калама тивет. Чĕлхе политики вара шăпах çакăнтан тапса тухмалла, общество пурнăçне чĕрĕ витĕм парса тăмалла.

Паллах, кашни чĕлхе хутшăну хатĕрĕ пулнисĕр пуçне урăх тĕллеве те пурнăçлать. Чăваш чĕлхи вăл наци пĕрлĕхĕн, пĕр шухăшлăхăн шăнăрĕ. Чĕлхемĕр халăхăмăрăн истори кун-çулне, культура еткерлĕхне, ăс-хакĕл мулне паянхи куна çитерме пултарнă, халĕ те çак хаклăран та хаклă тупрана упрать. Çавăнпа та халăха вĕрентес ĕç (ача садĕнчен пуçласа аслă шкул таранах), чăваш культурине тивĕçлĕ шая çĕклесси, ăслăлăхпа тĕпчев ĕçĕн тухăçлăхĕ тăван чĕлхе аталанăвĕпе питĕ тачă çыхăннă. «Çăкăртан асли çук» тет çĕр ĕçне пысăка хуракан чăваш. Питĕ тĕрĕс сăмах. Унпа пĕрлех пире «чун апачĕ» кирлĕ. Пирĕн пуласлăх чăлхемĕр чĕрĕ-сывă пулнинчен килет. Аслă тĕнчере эпир, чăвашсем, хамăрăн наци сăн-сăпачĕпе интереслĕ. Наци сăн-сăпачĕн чи витĕмлĕ палăрăмĕ, паллах, чĕлхе.

***Поэт калашле:***

*Чăваш хăйсене «Чăваш эп тенĕ чух*
*Кĕнекери кăвар пек сăмаха*
*Историн сивĕ кĕлĕ витес çук.*
*Вăл уçрĕ хăй вутне нумайлăха.*
*Пăхăрпала тăхлан пăтрашăнса*
*Илемлĕ, çирĕп бронза пулнă пек –*
*Çак хамăршăн ытарайми таса*
*Чĕлхемĕр те çухалмĕ пĕтĕмпех.*
*Ытти чĕлхесемпе пĕр хуранта*
*Вăл варăшĕ те пиçĕхĕ татах:*
*Юлашкинчен, хытсах ларсассăн та,*
*Упранĕ, тен, тĕлĕнмелле сăмах.*
*Çак чĕлхенех вăйне пара-пара*
*Поэт хăватлă шухăш хăварсан, –*
*Ун чапĕ кайĕ пĕтĕм çĕр тавра.*
*«Камран?» – тесессĕн, калĕç: «Чăвашран!»*

Хальлĕхе эпир хамăра «чăваш» тесех калатпăр, тăван чĕлхемĕр те «хытсах ларман-ха», анчах ăна вăй парсах тăмалла. Патшалăх чиновникĕсем, паллах, сăвăç йышши çынсемех мар, вĕсен чунĕ, кăмăлĕ урăхла. Аслă çыннăмăр, чăваш халăхĕн Вĕрентӳçи Якку Йăванĕ (И.Я. Яковлев) те патшалăх хĕсметĕнче тăнă. Пĕр пине яхăн чăваш шкулĕ уçнă, чăваш чĕлхине чиркĕве кĕртме пултарнă, чăваш наци интеллигенцийĕн çамрăк хунавне пăхса ӳстернĕ. Тепĕр икĕ çултан эпир И.Я. Яковлевăн 150 çулне паллă тума хатĕрленетпĕр. Çавăнпа та Чăваш наци конгресĕ Яковлев ячĕпе икĕ çуллăх ирттерме палăртать, чăвашлăхшăн тăрăшакан çынсене çак икĕ çул хушшинче Чĕлхемĕр ячĕпе, Чăваш Чĕрĕлĕвĕ ячĕпе усăллă ĕçсем туса хăварма йыхравлать. 1998 çулхи ака уйăхĕн 25-мĕшĕсенче – Якку Йăванĕ çуралнă кун, çавăн пекех Чăваш чĕлхи кунĕнче – намăс ан пултăр пире пурне те.

Халĕ пире тĕллевлĕ, конкретлă чĕлхе политики кирлĕ. Тен, чăваш чĕлхин чапĕ хăçан та пулин Чăваш çĕр-шывне те çитĕ.

Атнер ХУСАНКАЙ, ЧНК президенчĕ.
*«Хыпар», 28.03.1996, 64№.*

## ТĔРĔК ХАЛĂХĔСЕН ПĔРЛĔХĔ – ЭПИР ПАЯН ПУЛАСЛĂХШĂН ТĂВАКАН ĔÇ

*«Пирĕн тăрăхра кашкăр – чи вăйлă,*
*чи тĕрĕс, чи мăнаçлă та хăюллă тискер кайăк».*

Çирĕммĕш ĕмĕр вĕçленесси тата пирĕн эрăн виççĕмĕш пин çулĕ пуçланасси мĕн чухлĕ çывăхрах, эпир, вырăс çыравçи Андрей Платонов калашле, хамăра хамăр лайăхрах пĕлсе çитме, çак илемлĕ те кăра тĕнчери хамăр йышăнакан вырăна е, политологсен чĕлхипе каласан, эпир, чăвашсем, ку чухнехи геополитика анлăхĕнче хамăр йышăнмашкăн тивĕçлĕ вырăна уççăнрах ăнланса илме тăрăшатпăр.

Тĕплĕн пĕлме тытăнасси вара наци ăнланулăхĕ, ытти халăхсемпе тытакан тăванлăх туйăмĕ, культура пĕрлĕхĕ, чĕлхепе çыхăннă йăла-йĕрке ăçтан пуçланса кайнине палăртнинчен çул уçать. Чăваш историйĕ 1917 çултан е 1551 çултан (Чăваш çĕр-шывне Раççей йышне вăйпа кĕртнинчен) пуçланман. Кунта тавлашулли сахал мар. Пĕлтĕр эпир Пăлхар–чăваш патшалăхĕ 1100 çул тултарнине тата Чăваш совет автономине туса хунăранпа 75 çул çитнине паллă турăмăр. Çапла вара эпир наци патшалăхĕ туса хунине шутламалли икĕ вăта юпа туса палăртрăмăр. Çапах та пирĕн историе вĕсемпе туллин ăнлантарма май килмест. Историлле Пысăк вăхăтпа шутлас пулсан, эпир хамăра Тĕрĕксен Пысăк тĕнчине кĕртмесĕр тăма пултараймастпăр, мĕншĕн тесен пирĕн истори авалхи тĕрĕксен (тӳркӳт) историйĕпе уйрăлми çыхăннă.

Нарăс уйăхĕнче манăн Тĕрĕксен Пĕрремĕш Каганачĕ 1450 çул тултарнине халалланă ăслăлăхпа практика юбилей конференцине хутшăнма тӳр килчĕ. Çав конференцие ирттерес ĕçе Çĕпĕрти тĕрĕксен суверенлă республикисем – Алтай, Тыва, Саха (Якут) республикисем пуçарнă, ку ĕçе Уралпа Атăлçири Тутарстан тата Пушкăртстан республикисем те хастар хутшăннă. Конференцие тĕрĕк республикисен официаллă делегацийĕсем, çавăн пекех Мускавпа Санкт-Петербургри паллă тĕрĕк тĕпчевçисем пухăннă, вăл РФ Президенчĕ çумĕнчи Раççейĕн Патшалăх хĕсмечĕн академийĕнче ĕçленĕ. Конференцие пухса ирттерессипе çыхăннă мĕн пур тăкака РФ Национальноссен ĕçĕ-хĕлĕпе регион политикин министерстви хăй çине илнĕ.

Пирĕн эрăри пĕрремĕш ĕмĕрсенче, халăхсем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна нумай куçнă тапхăрта, Вăта çĕр Азирен тухнă ытти халăхсенни пекех, чăваш халăхĕн йăли-йĕркинче ĕлĕк-авал пурăннисене пысăка хурасси паллă вырăн йышăннă. Шел те, йăх (ратне) йывăççисем пирки çырса пынисем сыхланса юлайман. Çапах та чăваш-пăлхар-оногур этно-, глотто- тата топогенезне тимлесех тĕпчес тĕлĕшпе ĕçлекенсем пирĕн тăван чĕлхе тĕрĕк тымарĕнчен тухнине çирĕплетсе параççĕ, таçта айккинче юмахри пек «чаплă» несĕлсене шыранинчен тăрăхласа кулаççĕ çеç. Анчах дилетантла арпаштарасси паян кунччен тăсăлса пырать-ха, вăл чылайăшĕн ăсне-пуçне минретет, чăннипе каласан, культура йăла-йĕрки аталаннин, чĕлхе пуçланса кайнин çăл куçĕсене тарăннăн тĕпчеме килĕшменнине пĕлтерет (чĕлхене вĕренсе çитес тесен нумай тăрăшмалла-çке).

Авалхи тĕрĕк йăхĕсем ăçтан пуçланса кайнине çирĕплетекен тĕп-тĕрĕс юмах пур. Пирĕн чаплă ентеш, Китай тĕпчевçи Никита Бичурин (Иакинф атте) хăйĕн «Собрание сведений о народах, обитавших в Средней Азии в древние времена» ятлă питех те паллă ĕçĕнче (1851 ç.), китайсен Чжоушу тата Суйшу текен истори хайлавĕсене тишкерсе ăна акă мĕнле ăнлантарнă: «Тукюй çурчĕн авалхи йăхĕ Анăçри тинĕсрен те анăç енне-

рех пурӑннӑ, хӑйсен аймакне туса хунӑ. Ку вӑл – Хунну ӑрурчӗн Ашина текен уйӑрӑм енӗ. Каярахпа ҫав йӑха кӳршӗри ҫӗрсене алӑра тытакансем ҫапса аркатнӑ тата йӑлтах пӗтерсе тӑкнӑ. Вунӑ ҫулхи пӗр ача ҫес сыхланса юлнӑ. Вӑл пӗчӗккине кура ҫар ҫыннисем ӑна хӗрхеннӗ, вӑлермен: унӑн алли-урине касса татнӑ та хӑйсене курӑклӑ кӳлле пӑрахнӑ. Ҫав ача-на кашкӑр ами какай ҫитерсе усранӑ. Ҫӗр хуҫи арҫын ача чӗрӗ юлни ҫинчен илтнӗ те каллех ҫынсене ӑна вӑлерме кӑларса янӑ. Лешсем ача кашкӑр ами ҫумӗнче тӑнине курнӑ та кашкӑр амине те вӑлерме шут тытнӑ. Китай юмахӗ тӑрӑх, ҫав кашкӑр ами Гао-Чанран ҫурҫӗр-хӗвел анӑҫнелле тӑсӑлакан сӑрт-ту (Алтай тӑвӗсен таврине) Анӑҫ тинӗс таврашӗнчен пырса кӗнӗ. Ту ҫинче ҫӗр хӑвӑлӗ пур, ҫав ҫӗр хӑвӑлӗнчи темиҫе ҫӗр ли лаптӑкӑш тӳремлӗх ҫӑра курӑкпа витӗннӗ. Ҫӗр хӑвӑлӗн тӑвӑтӑ енӗпех сӑрт-ту хупӑрласа тӑрать. Кашкӑр ами унта тарса пытаннӑ, вунӑ ывӑл ҫуратнӑ, ҫитӗнсе ҫитсен ывӑлӗсем пурте авланнӑ, ача-пӑчаллӑ пулнӑ. Каярахпа кашнин хӑйӗн йӑхӗ пуҫланса кайнӑ. Ҫав шутра питех те пултаруллӑ Ашина, ӑна патшана суйласа лартнӑ: акӑ мӗншӗн вӑл хӑй пурӑнакан вырӑнти хапха ҫине кашкӑр пуҫне ӳкернӗ ялав кӑларса ҫакнӑ – хӑй ӑҫтан пуҫланса кайнине асра тытнӑ. Унӑн йӑхӗ майӗпен-майӗпенех темиҫе ҫӗр ҫемьене ҫити йышланнӑ».

Авалхи тӗрӗк халӑхӗ – тукю (тӳркӳт) текен Алтай тӗрӗкӗсем – йӗркеленнине ҫакӑн пек палӑртнӑ, ку вӑл шӑпах Алтай тӑвӗсен варринче пулса иртнӗ, чӑннипе, ку ӗҫсем 545–546 ҫулсенче пулнӑ. Кунтах «асамлӑ кашкӑр ами урлӑ» анӑҫри гунсемпе ҫыхӑну тытни-не те палӑртнӑ. Ятлӑ-сумлӑ Л.Н. Гумилев этнолог та ҫакна кӑтартса парать. Чӑваш этносӗн тӳрӗ несӗлӗсем – оногур-пӑлхарсем. Вӗсем гунсен аслӑ Аттила ертсе пынӑ империйӗ арканнӑ хыҫҫӑн Европӑра пурӑнма вырнаҫнӑ. Аттилӑран Рим легионерӗсем те шикленсе тӑнӑ, ӑна «Турӑ саламачӗ» тесе ят панӑ.

Ҫапла вара пирӗн истори Кашкӑртан пуҫланнӑ. Ӑна эпир поэзи классикӗ Кӗҫтенттин Иванов, XIX ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫуррине пуҫланнӑ Чӑваш Чӗрӗлӗхӗн чи ӑнӑҫлӑ тапхӑрӗнче хӑйӗн пултарулӑхӗпе палӑрнӑскер, наци ӑнланулӑхӗ пирки пуринчен те туллинрех тата уҫҫӑнрах ҫырса хӑварнинче куратпӑр. Вӑл ҫапла ҫырнӑ: «Пирӗн йӑхӑн мӑн аслашшӗ Кашкӑр пулнӑ. Тӗне кӗмен чӑваш пулнӑ вӑл. Икӗ ывӑлӗ юлнӑ унӑн: пӗри – Кашкӑр Иванӗ, тепри – Кашкӑр Куҫми. Иван йӑхӗнчен тухнисене «Пӑртта ачи-пӑчи» тенӗ. Ку йӑхран ҫаксем тухнӑ пирӗн: Кашкӑртан – Кашкӑр Иванӗ, Кашкӑр Иванӗнчен – Ҫимун, Ҫимунран – Микулай тиек, Микулай тиекрен – пуян Ваҫинкка, Ваҫинккаран – эпӗ, Кӗҫтӳк (1906 ҫ.)».

545–546 ҫулсенче Китайӑн Хӗвел анӑҫ Вей империйӗ тата Бумын-каган ертсе пынӑ тӳркӳтсем пӗр-пӗрин патне элчӗсем янӑ, ҫакӑ вӑл Вӑта ҫӗр Азири ҫӗнӗ этноспа патшалӑх пӗрлӗхне тӗнчере пӗрремӗш хут йышӑнни шутланнӑ. «Уртара пурте пӗрне-пӗри саламлама пикеннӗ, ҫапла каланӑ: халӗ пирӗн пата аслӑ ҫӗр-шыв элчи килсе ҫитрӗ, часах пирӗн патшалӑх та чапа тухӗ» (Бичурин «Собрание сведений...»). Тӗрлӗ ӗҫсем пулса иртнӗ хыҫҫӑн, уйрӑммӑн илсен, тӗрӗксем хӑй тӗллӗнлӗхлӗ патшалӑх туса хурассишӗн вӑйлӑн ҫапӑҫсан (чӑн та, сӑмах кунта уйрӑм йышши патшалӑх – Ҫеҫен хир Империйӗ туса хуни ҫинчен пырать), 554 ҫул тӗлне тӗрӗк патшалӑхӗн ҫарпа экономикӑн пысӑк вӑй-хӑвачӗ йӗркеленсе ҫитет. Ҫав патшалӑхра ҫар-ӑру тытӑмӗ социаллӑ пурнӑҫпа политикӑн пӗрлӗхлӗ тытӑмӗ пулса тӑнӑ. Урӑхла каласан, ку вӑл йӑхсен ахаль пӗрлешӗвӗ е тискер урта пулман ӗнтӗ. Авалхи тӗрӗксем патшалӑхӑн ҫавнашкал тытӑмне «Эль» тенӗ, вӑл латинсен «imperium» тата славянсен «держава» сӑмахӗсемпе пӗрешкел (Л.Н. Гумилев). «Ӗмӗрлӗх Эль», – тӗрӗксем хӑйсем ҫапла каланӑ. Бумынӑн кӗҫӗн шӑллӗ Истеми-каган, анӑҫалла тапӑнса, тӳркӳтсене Атӑл хӗррине илсе тухнӑ хыҫҫӑн, малалла дипломати тата вӑрҫӑ тӗлӗшӗнчен пуҫарулӑх кӑтартса, ҫеҫен хире Согдианӑпа пӗрлештерсен, Тӗрӗк Элӗ Боспор ҫывӑхӗнче Византи имерийӗн чикки патнех ҫитнӗ. VI ӗмӗр вӗҫӗ Тӗрӗк патшалӑхӗ чи лайӑх аталанса ҫитнӗ тата вӑйланнӑ тапхӑр шутланать, вӑл Сарӑ тинӗсрен Хура тинӗсе ҫити сарӑлса выртнӑ, Вӑтам Азие пӗтӗмӗшпех йышӑнса тӑнӑ.

Ҫапла вара Пӗрремӗш Каганатри (545–658 ҫ.ҫ.) тӗрӗксем (тӳркӳтсем), Иккӗмӗш Каганатри (678–747 ҫ.ҫ.) кок-тюрксем (кӑвак тӗрӗксем), ҫавӑн пекех уйгурсем (747–847 ҫ.ҫ.) ҫав вӑхӑтра тӗнче цивилизацийӗнче, урӑхла каласан, патшалӑхсен тытӑмӗнче, кунпа пӗрлех Китай, Иран, Византи тата Инди культуринче хӑйсен вырӑнне тупнӑ. Паллах, тӗрӗксен ҫеҫен хир культурин хӑйӗн аваллӑхӗ, тарӑн тымарӗсем (ҫав шутра Тенгри – Турӑ тӗнӗ) пулнӑ. Инҫет Хӗвел тухӑҫпа Вӑта ҫӗр тинӗс цивилизацине, унччен пӗр-пӗринчен уйрӑм тӑнӑскерсене, ҫыхӑнтарса тӑракан Тӗрӗксен Пӗрремӗш Каганатне туса хуни Европӑпа Ази пӗрлешмелли никӗс пулса тӑнӑ, кунта Ашина (Кашкӑр) йӑхӗнчи тӗрӗксем уйрӑмах паллӑ вырӑн йышӑннӑ.

Тухӑҫри тата анӑҫри тӗрӗксен ҫак истори, этноспа культура тата чӗлхе несӗллӗхне тӗпе хурсан, тӗрӗк халӑхӗсем хальхи вӑхӑтра тӗрӗк пӗрлӗхне ҫирӗплетме тата аталантарма тӑрӑшни пур енчен те килӗшӳллӗ тата саккунлӑ. Тӗрӗк пӗрлӗхӗпе килӗшӳлӗхӗн тытӑмӗ никама та хӑратса тӑмасть, пачах урӑхла, хальхи тӗнчере тӑнӑҫлӑха ҫирӗплетме пулӑшать, чӑвашсене вара тӗнчене тухмалли паха малашлӑх уҫса парать.

Акӑ мӗншӗн, Кӳлтегин тӗрӗксен малтанхи историне ҫырса хӑварнӑ хыҫҫӑн (732 ҫ.), эпир ун хыҫҫӑн ҫапла кӑна калама пултаратпӑр: «Ҫӳлте кӑвак тӳпе, аялта хӑмӑр ҫӗр туса хунӑ, вӗсем хушшинче этем ывӑлӗсене туса хунӑ хыҫҫӑн, этем ывӑлӗсен пуҫне манӑн мӑн асаттесем Бумин-каганпа Истеми-каган ларнӑ хыҫҫӑн(...) тӗрӗксен Тенгрийӗ тата сӑваплӑ Ҫӗр-Шывӗ ҫапла каланӑ: «Тӗрӗк халӑхӗ пӗтес ҫук, халӑх пулсах юлтӑр».

Атнер ХУСАНКАЙ,
Чӑваш наци конгресӗн президенчӗ.
*«Хыпар», 2.08.1996, 152№.*

## ЧӐВАШ НАЦИ КУЛЬТУРА АВТОНОМИЙӖСЕМ ПУЛМАЛЛАХ

*Чӑваш наци конгресӗн ларӑвӗсене тулай йӑхташӑмӑрсем патӗнче ирттерессиырӑ йӑла пулса тӑчӗ темелле. Черетлӗ анлӑ лару Чӗмпӗрте иртрӗ. Унта Шупашкартан пысӑк делегаци, Чӗмпӗрти И.Я. Яковлев ячеллӗ ҫут ӗҫ обществин хастарӗсем, Самартан, Анат Камӑран, Чулхуларан, Тольяттирен килнӗ чӑвашсем хутшӑнчӗҫ.*

Тӗпрен илсен, икӗ тӗп ыйту пӑхса тухрӗҫ конгрессменсем: И.Я. Яковлев ҫуралнӑранпа 150 ҫул ҫитнине тивӗҫлӗн палӑртма хатӗрленсе икӗ ҫуллӑхра тӑвас ӗҫсене тишкересси тата чӑваш наци культура автономине туса хурассине, ун ҫинчен калакан РФ саккунне сӳтсе явасси.

### Тӗнче, кашни чӑваш И.Я. Яковлев икӗ ҫуллӑхне хутшӑнччӑр

Пӗрремӗш ыйтупа ЧНК вице-президенчӗ **В.П. Станьял** тухса калаҫрӗ. Вӑл И.Я. Яковлевӑн 150 ҫулне тӗнче шайӗнче ирттермеллине палӑртрӗ. Ку тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ те иккен. Акӑ, ЮНЕСКО ертӳҫисемпе чӑваш халӑх поэчӗ Г.Н. Айхи сӑмахлать. Раҫҫей правительствипе те пӗр чӗлхе тупмалла. Ҫапла, сутта кӑларакан ӑмӑра тӗнчере те, Раҫҫейре те пӗлеҫҫӗ-ха, сума сӑваҫҫӗ, мӗн тӑвассине пурнӑҫлас шанчӑк пур ҫавӑнпа.

Уйрӑмах Виталий Петрович чӑваш халӑхӗ хӑй аслашшӗне мӗнле чысласси тата чыслама тивӗҫҫи ҫинче чарӑнса тӑчӗ. «И.Я. Яковлев икӗ ҫуллӑхне кашни чӑваш хутшӑнмалла». Ҫакӑ тӑвӑтӑ йӗркепе пулса пымалла: 1) ачасене вӑйӑ-кулӑ, вӗрентӳ урлӑ; 2) ҫамрӑксене, яшсене-пикесене – вӗрентӳ, ташӑ-ҫемӗ, дискотека таранах; 3) вӑйпиттисене кулленхи пурнӑҫрах икӗ ҫуллӑха хутшӑнтармалла; 4) ватӑсене, мучисемпе кинемейсене керемсем уҫса пама тахҫанах вӑхӑт. Ку – кӗскен ҫырни ҫеҫ.

В.П. Станьял икӗ ҫуллӑха хутшӑнса тӗрлӗ мероприятисем сӗнет, оларӑмӑр ӗнтӗ, вӗрентӳрен пуҫласа юрӑ-ташӑ, дискотека, фестивальсем таранах. Ялти лавккара чӑвашла календарь ҫакни те, тулайри чӑваша пӗр кӗнеке парнелени те, кантур умне чӑвашла пӗлтерӳ ҫакни те ҫавнах пӗлтереҫҫӗ. И.Я. Яковлев икӗ ҫуллӑхне хастар хутшӑнни чӑвашлӑха аталантарас ӗҫре черетлӗ карт, утӑм пулмалла.

И.Я. Яковлев ҫуралнӑ куна Чӑваш Республики те, Тутарстан та (унта ҫуралнӑ, вӗреннӗ, ӗҫленӗ), Чӗмпӗр облаҫӗ те (кунта вӗреннӗ, ӗҫленӗ) анлӑн палӑртма хатӗрленеҫҫӗ. Правительствӑсен шайӗнче асӑннӑ уяв тӗлне тата 1998 ҫулта культура тата халӑх хуҫалӑхӗнче мӗн-мӗн тӑвасси пирки тивӗҫлӗ хут та йышӑннӑ. Анчах лав вырӑнтан тапранмасть. Виталий Петрович кантурҫӑ-хыснаҫӑсене хӗтӗртсе тӑмаллине

ас тутарчĕ. Вăл кашни ĕçе вырăнти администраци хăвачĕпе халăх хастарлăхне пĕрлештерсе пурнăçлама май шырамаллине каларĕ, «çакăншăн ятарласа укçа-тенкĕ илекенсем ĕçлеччĕр, пирĕн вара тĕрĕслесе, вĕрентсе, хĕтĕртсе тăмалла».

Икĕ çуллăхра мĕн-мĕн пĕлтерĕшлĕ те васкаса тумаллине палăртса ЧНК Мăн Канашĕпе И.Я. Яковлев ячĕллĕ çут ĕç общество пĕрлехи йышăну турĕç.

**Ку саккунпа Чăваш Республикин автономине те пĕтерме пулать теççĕ. Çук, апла мар!**

Иккĕмĕш ыйтупа ЧНК президенчĕ **А.П. Хусанкай** сăмах илчĕ.

– Наци культура автономийĕ çинчен калакан саккун наци юхăмĕн право, финанс, йĕркелÿ никĕсне хывнă. Ман шутпа, çак саккун чăвашсемшĕн, пирĕншĕн çеç мар, ытти халăхсемшен те, питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Унпа пĕлсе усă курма пулать, усă кurmалла та. Автономие саккун тĕрлĕ тивĕçлĕхсем парать, вĕсемшĕн Раççей Федерацийĕн субъекчĕсем яваплăх илеççĕ.

Саккунпа килĕшÿллĕн наци культура автономине виçĕ шайра йĕркелеме пулать: 1) вырăнта (хула, район, поселок); 2) регионта (облаç, республика); 3) федераци шайĕнче. Пĕчĕкрех шайри автономисем пысăккисене пĕрлешеççĕ, йĕрки çапла. Раççейĕн икĕ субъектĕнче регион автономийĕ пулсан Мускаври чăваш федераци наци культура автономине регистрацилеме май пулать (аса илтерер: Чăваш наци конгресне Мускавра регистрацилеме Раççейĕн 55 субъектĕнче унăн уйрăмĕсем пулмаллаччĕ. – В.Н.). Каларăмăр ĕнтĕ, ку хут çине çеç çырăнни мар, тивĕçлĕ укçа-тенкĕ те.

Саккун субъектсен администрацийĕсен çумĕнче ятарлă консультаци канашĕ (унта наци çыннисем пулмалла) йĕркелеме май парать. Вăл, паллах, хушусем кăлараймĕ, канашсем çеç парĕ, анчах наци ыйтăвĕсене татса панă чух администрацисем ун шухăшне шута илме тивĕç.

Мĕн парать-ха çак саккун? Пĕррремĕшĕнчен, тăван чĕлхене упрасси, аталантарасси, усă курасси (наци, шăмат е вырсарни çеç шкулĕсене уçасси; вĕренÿ материалĕсемпе тивĕçтересси тата ытти те). Иккĕмĕшĕнчен, наци культурине упрасси тата аталантарасси (пултарулăх союзĕсене, тавра пĕлĕве, фольклор ушкăнĕсене пулăшасси, культура палăкĕсене упрасси...). Виççĕмĕшĕнчен, наци массăллă информаци хатĕрĕсене аталантарасси. Çак виçĕ сăваплă ĕçе туса пыма вырăнти, регионсен тата федераци бюджечĕсем укçа-тенкĕ уйăрмалла, саккун çапла ыйтать.

Наци культура автономийĕсем кредит илнĕ, арендăшăн тата налук тÿленĕ чух тĕрлĕ çăмăллăхсемпе усă курма пултараççĕ. Анчах та унпа тĕллевлĕ усă курмалла, çавăнпа та малтан тĕллевлĕ программăсем тăратас пулать. Çак саккун «РФ патшалăхăн наци политикин концепцийĕ» текен тепĕр саккунпа (вăл чылай енчен хирĕç тăруллă пулин те) çыхăнса тăрать. Çапах кунта усăмлăхĕ чылай. Вăл пичетленнĕренпе вăя кĕнĕ ĕнтĕ, ĕçлемелли çеç юлать.

Атнер Петрович сăмахне пурте çăвар карса итлерĕç (ара, хăшĕсем саккунпа лайăх паллашайман та-çке), унтан ыйтусем пачĕç.

**– Çак саккун Чăваш автономине пĕтерсе хума пултарать теççĕ.**

– Çук, апла мар. Саккунра сăмах территори автономийĕ çинчен пымасть. Чăваш Республики вăл – уйрăм субъект. Наци культура автономийĕ вара ытти кашни субъектрах йĕркеленме пултарать.

**– Чăваш наци конгресĕпе, И.Я. Яковлев ячĕллĕ çут ĕç обществипе, ытти организацисемпе мĕн пулĕ-ши?**

– Туллин калаймăп та. Хальлĕхе ку саккунпа ĕçлемелле пулĕ тетĕп. Халĕ вырăнсенче пухусем ирттермелле, уставсем йышăнмалла, регистрациленмелле. Унтан регионсене, кайран Мускава тухмалла. Патшалăх Канашĕ ЧНК статусне саккунпа çирĕплетмерĕ, тен, ку саккун çине таянса ĕçĕмĕре вăйлатма пултарăпăр.

– Халĕ çине тăрса ĕçлемелле. Тутарсем хускалчĕç. Эпир те саккунне сÿтсе яврăмăр-ха, автономи туса хумалла, – терĕ Чĕмпĕрти И.Я. Яковлев ячĕллĕ çут ĕç обществин ертÿçи **В.Г. Егоров**.

– Хальхи саккунсемшĕн ЧНК та, сăра юратакансемпе лĕпĕш хăвалакансен обществисем те пĕрешкел. Çак саккун чылай меслет уçса парать. Автономисене йĕркелеме пуçламаллах. Ас тăвăр: енчен те субъектра пĕр е икĕ чăваш ялĕ çеç пулсан, вĕсем тÿрех регион шайĕнче автономи йĕркелеме пултараççĕ. Федераци шайĕнчи наци культура автономине туса хурасси, ман шутпа, ЧНК Президиумĕ урлă пулса пымалла, – терĕ **О.М. Цыпленков.**

Ун сăмахне тимлесе тивĕçлĕ резолюци йышăнчĕç. Пĕтĕм ĕçе тишкерсе, йĕркелесе пыраканĕ пулма А.П. Хусанкая шанчĕç, наци культура автономине чи малтан туса  ыттисемшĕн тĕслĕх пулма Чĕмпĕрсене сĕнчĕç.

**Кунашкал чăвашсем пур чух ĕçлемелле те ĕçлемелле**

Юлашкинчен ларура тĕрлĕ ыйтусене тишкерчĕç. Чăваш аталану партийĕн ертÿçи **Н.Е. Лукианов** Тĕнчене тухайман халăхсен организацийĕн Тартура иртнĕ регион канашлăвĕ çинчен каласа пачĕ. «ТТХОн Генеральнăй ассамблейи çитес çулхи утă уйăхĕнче иртмелле, унта çĕнĕ председатель суйламалла. Абхазсем ассамблея председателĕ пулма Атнер Петрович Хусанкая сĕнчĕç. Çакă А.П. Хусанкая тĕнче шайĕнче хисепленине пĕлтерет...» – терĕ Николай Егорович. Çак шухăша ырласа тивĕçлĕ резолюци йышăнма сĕнчĕ. Пурте тăвăллăн алă çупса килĕшрĕç. «Вара Атнер Петрович Шупашкартан пăрахса каять-и? Ямастпăр!» – «Çук, ĕçлеме Шупашкартах ĕçлĕ. Унăн тивĕçĕ – ТТХОн канашлăвĕсене ирттересси, йĕркелесси, ертсе пырасси. Çавăнла та кăштах ытларах тухса çÿреме çеç тивĕ».

**Н.А. Атряскин** кĕскен Анат Камăри ĕçсемпе паллаштарчĕ. Вĕсем унта «Чăваш шăпчăкĕ» конкурс ирттереççĕ-мĕн, Çĕпрелте, Нурлатра иртнĕ, раштавра Альметьевскра пулмалла. Унта Тутарстанри наци коллективĕсем (фольклор, эстрада, уйрăм юрăçсем) хутшăнаççĕ.

– Пирĕн шкул кăçал 5 çул тултарать. Раштавăн 28-мĕшĕсенче çак ятпа пысăк уяв ирттеретпĕр. Раштавăн 29-мĕшĕсенче вара Анат Камăра пĕтĕм чăвашсен Çĕнĕ çул уявĕ пулать. Нарăс уйăхĕнче Анат Камăрах «Чăваш шăпчăкĕ» конкурс финалĕ, фестиваль иртĕç. Сире пурне те унта чĕнетпĕр», – йыхравпа вĕçлерĕ сăмахне Николай Александрович.

Çак ларăва ирттерме тĕрлĕ йывăрлăх пулни çинче чарăнса тăчĕ **О.М. Цыпленков**. Облаç администрацийĕ тĕрлĕ (суйлавсем имĕш, ЧНК общество организацийĕ çеç иккен тата ытти те) | сăлтавласа ăна ирттерессине куçара-куçара пынă. «Çавăнпа та хамăрăн ÿпкевлĕ шухăша пĕлтермелле мар-ши?» – терĕ Олег Михайлович. «Ирттертĕмĕрçке. Паллах, мĕнле йывăррине эпир çеç пĕлетпĕр. Мĕнле пулсан та пирĕн дипломат пулмалла, хирĕçме кирлĕ мар», – хуравларĕ ЧНК Мăн Канашĕн членĕ, Чĕмпĕрти «Еткер» ыр кăмăллăх фончĕн пуçлăхĕ **О.Н. Мустаев.** Ăна итлесе пурте пĕр шухăшлăн администраци ячĕпе тав çырăвĕ яма йышăнчĕç.

Пурте юлашкинчен И.Я. Яковлевăн музейне çул тытрĕç. 5 çул каялла пулнăччĕ хунта пирвай, халь тата пуянланнă иккен. «Анчах Чăвашран сахалтарах килеççĕ-ха музейпа паллашма», – ÿпкев пекех илтĕнчĕç экскурсоводăн сăмахĕсем.

В.НИКОЛАЕВ.

## ЧНК Канашĕн ларăвĕн ЙЫШĂНĂВĔ
## ЧĂВАШ НАЦИ КУЛЬТУРА АВТОНОМИЙĔСЕМ ÇИНЧЕН

Наци культура автономийĕн ăнлавĕ кашни халăхăн наци культура енĕпе çыхăннă хăй тĕллĕнлĕх прави пуррине палăртать. Раççей Федерацийĕн «Наци культура автономийĕ çинчен» саккунĕ чăваш халăхне малалла аталантарма тата пĕрлештерме майсем туса парать. Çак саккун паракан майсемпе йĕркеллĕ те кирлĕ пек усă курас тĕллевпе ЧНК Канашĕ çапла йышăнать:

**1.** Раççей Федерацийĕн «Наци культура автономийĕ çинчен» саккунĕпе килĕшÿллĕн Раççей территорийĕнче чăваш наци культурин тĕрлĕ шайри автономийĕсене çитес вăхăтрах йĕркелесе ямалла тесе шутлас.

**2.** Пысăк пĕлтерĕшлĕ çак ĕçе майлаштарса тата тытса пыма йĕркелӳ комитечĕ туса хума палăртас. Унăн тытăмне палăртса членĕсене суйлама ЧНК Президиумне хушас. Йĕркелӳ комитечĕн ертӳçи пулма ЧНК президентне АП. Хусанкая суйлас.

**3.** ЧНК Чĕмпĕр облаçĕнчи уйрăмне чăвашсен Раççей Федерацийĕнчи диаспоришĕн тĕслĕх пулса чăваш наци культура автономине пуçарса йĕркелесе яма тăрăшма ыйтас.

ЧНК президенчĕ А.П. ХУСАНКАЙ.
Чĕмпĕр хули,1996, çӳк, 9.

### ЧНК Канашĕн ларăвĕн ЙЫШĂНĂВĔ
## ТĔНЧЕНЕ ТУХАЙМАН ХАЛĂХСЕН ОРГАНИЗАЦИЙĔН (ТТХО) ТАРТУРИ РЕГИОН КАНАШЛĂВĔН РЕЗОЛЮЦИЙĔ ÇИНЧЕН

ТТХОн Тартури регион канашлăвĕн 1996 çулхи юпа уйăхĕн 14-мĕшĕсенче иртнĕ ларăвĕ ТТХОн Генеральнăй Ассамблейин председателĕ пулма ЧНК президентне А.П. Хусанкая сĕннĕ. Çак йышăну ЧНКшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ, числă пулăм. Вăл А.П. Хусанкая тĕнче шайĕнчи политик вырăнне хунине, унăн чăваш наци аталанăвĕнчи тӳпи пысăк пулнине пĕлтерет. Çакна палăртса ЧНК Канаше çапла йышăнать:

1. 1996 çулхи юпа уйăхĕн 14-мĕшĕсенче ТТХОн Тартури регион канашлăвĕ ТТХОн 1997 çулхи утă уйăхĕнче иртекен Генеральнăй Ассамблейинче çак организаци председателĕ пулма ЧНК президентне А.П. Хусанкая сĕннине ырлас.

**2.** ТТХОн çитес Генеральнăй Ассамблейинчен организаци председательне ЧНК президентне А.П. Хусанкая суйлама сĕнес.

**3.** Çакăнпа çыхăннă ĕçсене йĕркелесе тытса пыма ЧНК Президиумне хушас.

ЧНК вице-президенчĕ В.П. СТАНЬЯЛ.
Чĕмпĕр хули, 1996, çӳк, 9. *«Хыпар», 10.12.1996, 248№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН ПРЕЗИДИУМĔН ЙЫШĂНĂВĔ

**Республикăра чĕлхесен саккунĕ мĕнле пурнăçланса пыни çинчен**

Чăваш наци конгресĕн ĕçтăвкомĕ (секретариачĕ) йышăннипе 1997 çулхи нарăс уйăхĕнче Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта тата республикăри ытти хуласемпе район центрĕсенче чăваш сăмахĕ мĕнле курăнни-илтĕннине, чĕлхесем çинчен калакан саккун мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслемелли эрнелĕх иртрĕ. Тĕрĕслев вăхăтĕнче ЧНК секретариатне тата хаçатсен редакцийĕсене нумай шăнкăравсемпе çырусем, кĕрсе калакансем пычĕç. Тĕрĕслеве пĕтĕмлетсе ЧНК Президиумĕ çапла йышăнать:

1. Лайăх тĕслĕхсем сахал мар пулсан та – Чĕлхесен саккунĕ хуласенче, унтан та ытларах, район центрĕсенче палăртнă пек пурнăçланса пымасть. Район администрацийĕсенче саккуна пурнăçлас тесе ĕçлекен вăйсем çук. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Чĕлхесен саккунне пурнăçа кĕртме уйăрнă Комиссийĕ пачах ĕçлемест, малтан палăртнă ĕç ушкăнĕсем хут çинче кăна шутланса тăраççĕ.

2. Чăваш наци конгресĕ И.Я. Яковлевăн 150 çулĕ ячĕпе пĕлтернĕ икĕ çуллăха Чăваш Республикин Вĕрентӳпе ăслăлăх тата аслă шкул министерстви, Культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерстви тата И.Я.Яковлев 150 çулне палăртма уйăрнă комисси курмăш пулса тăраççĕ. Халăх ĕçĕ çине çапла пăхнине Чăваш наци конгресĕ сивлет.

3. Район администрацийĕсене «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккуна пурнăçламалли плансене тепĕр хут пăхса тухма тата ĕçе пуçăнма сĕнес; И.Я. Яковлев çуралнă кун – Чăваш чĕлхи кунĕ тĕлне – ака уйăхĕн 25-мĕшĕччен ЧНК Канашĕн анлă ларăвĕнче ЧР Президенчĕн администрацийĕн тата Патшалăх Канашĕн яваплă çыннисемпе пĕрле çак ĕçе япăх туса пыракан хуласемпе районсен администрацийĕсен отчечĕсене итлес.

4. Чăваш Республикин тата районсен хаçачĕсем, Чăваш телекуравпа радио пĕрлешĕвĕ чăваш наци культурипе чĕлхине аталанма пулăшас енĕпе чылай тăрăшнине, анчах çак ĕçе тикĕс те çирĕп йĕркепе туса пыманнине палăртас. Малашне наци культурипе чĕлхе ыйтăвĕсене тĕплĕнрех те тăтăшрах çутатса тăма ыйтас.

ЧНК вице-президенчĕ В.П. СТАНЬЯЛ.
*«Хыпар», 5.03.1997, 44№.*

## ЧĂВАШ – ЧĂВАША...

*Тамăк... Ангел вилнĕ çын чунне ăçта кам вырнаçнипе паллаштарать. Икĕ пысăк хуран. Пĕрне витнĕ, тепри уçах. Мĕншĕн апла-ха? «Витнинче – еврейсем. Пĕри тухма пултарсан ыттисене тухма пулăшать. Çавăнпа витмесĕр май çук. Тепринче – чăвашсем. Пĕри хурантан хăпарма тытăнсанах ыттисем ăна каялла туртса антараççĕ, тухма памаççĕ. Çапла вара ку хурана витме те кирлĕ мар».*

Паян кулăш кунĕ, çавăнпа та шӳтлет-ха ку тесе шухăшлама ан васка, хисеплĕ вулаканăм. Çӳлерехри «пурнăç анекдотне» тĕслĕх вырăнне илсе кăтарни ахальтен мар. Пуш уйăхĕн 28-мĕшĕсенче Чăваш Республикин Аслă сучĕ пăхса тухнă ĕç шăпах тамăкри лару-тăрăва аса илтерчĕ.

Вулакансене хаçатăн иртнĕ номерĕсенчен пĕринче ЧР Прокуратури ЧР Аслă Судне заявлени тăратни çинчен пĕлтернĕччĕ. ЧР Аслă Совечĕн «Чăваш Республикин «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккунне ĕçе кĕртмелли йĕрке çинчен» постановленийĕн 3 пункчĕн 3 абзацне, çакă РФ Конституцине хирĕçлет тесе, пăрахăçлама ыйтнă унта. Заявление ЧР прокурорĕн çумĕ, юстицин аслă советникĕ **Г. Михопаркин** алă пуснă.

Юстици çурчĕн ларусен залĕ. Кунта паян ЧР прокуратури тăратнă ыйтăва пăхса тухаççĕ. Тăван чĕлхе пуласлăхне (чăннипех те çапла çакă) хӳтĕлеме килнисем те кунтах: ЧР Патшалăх Канашĕн Культура, вĕрентӳ, информаци политики тата çыхăну енĕпе ĕçлекен комитечĕн ертӳçи **Г. Архипов**, Патшалăх Канашĕн юридици пайĕн ертӳçи **А. Ухтияров**, Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ **В. Никитин-Станьял**, ЧНК секретариачĕн ертӳçи **О. Цыпленков**, общественноç енчен **В. Иванов профессор, М. Антонов, В. Туркай** поэт. Прокуратура енчен – прокурорăн федераци саккунĕсене еплерех пурнăçласа пынине тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕçлекен аслă пулăшаканĕ **С. Трофимов**. Тăратнă ыйтăва пăхса тухассине **Е. Петрова** судья тытса пырать. Судьяран пĕрремĕш асăрхаттару илнĕ хыççăн **Валери Туркай** суд залĕнчен тухса кайрĕ.

«Спектакль» (каçарăр та, 6 сехете пынă суд ларăвне çак сăмахпа хакласан тĕрĕсрех пулĕ тетĕп) малалла пырать. Пĕрремĕш итлеври пекех – прокуратура хăй ыйтнине тивĕçтерме, постановленин 3 пункне (3 абзац) юрăхсăр тесе шутлама, пăрахăçлама ыйтать, мĕншĕн тесен çакă Чăваш Республикинче пурăнакан халăхăн 32 процентĕн (68 проценчĕ – чăвашсем) прависене хĕсни пулать имĕш. [Асăннă пунктра сăмах ертсе пыракан хăш-пĕр должноçсенче патшалăхăн икĕ чĕлхине (чăвашла тата вырăсла) пĕлекенсем кăна ĕçлеме пултарни, республика территорийĕнчи аслă тата ятарлă вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕнĕ чух тăван чĕлхепе экзамен тыттарасси çинчен пырать.] «Хĕстерни» – лару тăршшĕпех илтĕнчĕ çак сăмах. Чăннипе вара камăн прависене хĕсет-ха асăннă пунктра çырса хăварни? Çавна май вулакансене 6 сехет хушшинче килсе тухнă хăш-пĕр самантсемпе паллаштарни ытлашши пулмĕ тетĕп.

Чăн малтанах – мĕншĕн чĕлхесем çинчен калакан саккуна йышăннăранпа 6 çул иртсен тин вăраннă прокуратура? Çак ултă çул тăршшĕнче пĕри теприне хĕсни-мĕнне пурте асăрхамасăр пурăннă, çиччĕмĕш çулĕнче вара сасартăк «куççем уçалнă» пулса тухать-и? Прокуратура представителĕн ăнлантарăвĕ тăрăх – çакă РФ генпрокуратурин 1996 çулхи хушăвĕпе çыхăннă (вырăнсенчи саккунсем РФ саккунĕсене хирĕçлемеççĕ-и, пурнăçланаççĕ-и – çакна тĕрĕслеме хушнă). Тĕрĕссипе вара прокуратурăн йышăннă саккунсене хăйĕнех куллен, хушасса кĕтмесĕрех тĕрĕслесе-тишкерсе тăмалла мар-и-ха? Çук, пĕртте чыс кӳмест çакă пирĕн «тăван» прокуратурăна. (Сăмах май, саккунсем пурнăçланччăр тесен чăн малтан «саккун хуралçисен» хăйсен тĕслĕх кăтартмалла пек те, чĕлхе саккунĕ туллин пурнăçланни курăнмасть кунта. Пӳлĕмсен ячĕсем пирки каламăпăр та. ЧР прокуратура çурчĕ

тăрринче Раççей ялавĕ кăна вăлкĕшнине вара мĕнле ăнланмалла? Çакăн хыççăн, тĕрĕссипе, кунта чăвашлăх çинчен калаçма та аптрамалла.)

Иккĕмĕш самант. Вăл е ку аслă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕнĕ чухне пурте вырăс чĕлхипе экзамен тытатпăр. Паллă ĕнтĕ, çакăн хыççăн абитуриентсен пысăк йыше самай «шĕкĕлченет». Кам иртеймест малалла? Ытларахăшĕ – чăваш ывăл-хĕрĕ. «Ахальтен мар, –палăртрĕ Г. Архипов, – республикăри аслă вĕренӳ заведенийĕсенчи вĕренекенсен 25 проценчĕ кăна – ялтан тухнисем. Эппин, вырăс чĕлхипе экзамен тыттарни чăваш çыннин правине хĕсни пулмасан, мĕншĕн-ха чăваш чĕлхипе экзамен тыттарнăшăн хурах кăшкăрмалла?

Постановленин 3 пунктĕнче (3 абзац) чăваш чĕлхине пĕлмесен хăшпĕр должноçсенче ĕçлеме пултарайман специальноçсен перечене пирки сăмах пырать. Хальлĕхĕ хатĕр мар, тĕрĕссипе – çук çав перечень. Çук япала пурнăçланасси пулма пултарать-и-ха? Ахальтен мар постановленире хăш-пĕр статьясем саккуна йышăннă хыççăн 10 çултан тин пурнăçланмашкăн тытăнма пултарнине асăрхаттарса хăварнă. Анчах çук япалана (хăшĕ-пĕри палăртнă пек çуралман ачана персе пăрахниех мар-и-ха çакă) суд тăваççĕ. Асăннă перечень пирки каласан, хăш-пĕр ĕçре чăннипех патшалăхăн икĕ чĕлхине пĕлмесен ниепле те май çук. Тĕслĕхрен, куçаруçă, вырăс шкулĕсенче чăваш чĕлхине вĕрентекен, чăваш чĕлхин кафедрин ертӳçи тата ытти те. Эппин, мĕншĕн пăрахăçламалла 3 пункта?

«Чăваш халăхĕн 50 проценчĕ республика тулашĕнче пурăнать. Вĕсен тăван килĕ пулса тăнă регионта, субъектра та çакăн евĕр саккун йышăнсан – мĕн тумалла тулай чăвашĕн? Çавăнпа пирĕн заявлени чăваш халăхĕн прависене хĕсни, пĕтĕмĕшпе чĕлхене, халăха айăплани тесшĕн мар. Çакă саккуна пăхăнмаллине, ытти национальноçсен прависене хӳтĕленине пĕлтерет», – палăртрĕ прокуратура представителĕ. Мĕн тумалла тетĕр-и? Кун пек чух пĕр çул: вырăнти халăх чĕлхине те вĕренмелле. Эстон, пушкăрт, тутар чăвашĕсем ку тĕлĕшпе тахçанах ăсланса çитнĕ ĕнтĕ. Хамăрăн Патăрьел тăрăхĕнчи Шăнкăртам, Комсомольски районĕнчи Урмаел тутарĕсене пăхар-ха. Чăвашла калаçса чăвашах сутса ярĕç. Эппин, мĕншĕн çав 32 проценчĕн те саккунпа çирĕплетнĕ патшалăх чĕлхисене иккĕшне те вĕренес мар?

6 сехете пычĕ суд ларăвĕ. Тĕрĕсрех, тавлашуллă калаçу темелле-тĕр. Прокуратура хăйĕн шухăшне улăштармарĕ. Лару вĕçĕнче каланă сăмахĕнче те постановленин 3 пунктне (3 абзац) пăрахăçлама ыйтрĕ. Тепĕр ен те (ЧР Патшалăх Канашĕ) ЧР прокуратури тăратнă ыйтăва йышăнманнине, асăннă 3 пункт (3 абзац) ниепле те çын прависене хĕсменнине палăртрĕ (çакна уйрăм саккунсем те çирĕплетеççĕ. Тĕслĕхрен, 1991 çулхи юпан 25-мĕшĕсенче йышăннă «РСФСРти халăхсен чĕлхисем çинчен» РСФСР саккунĕнче 4-мĕш сыпăкра «професси хутшăнăвĕнче вăл е ку чĕлхепе усă курнă чух уйрăм самантсем тĕл пулма пултараççĕ, кун пек чух вырăнти лару-тăрăва кура уйрăм йышăнусемпе виçесем палăртма ирĕк пур» тесе çырнă), çавна май заявление каялла тавăрса пама сĕнчĕ.

Вулакана суд ларăвĕ вăхăтĕнче çуралнă хăш-пĕр шухăш-асăрхаттарусемпе паллаштарас килет. Чăннипех те, тăван чĕлхене суд тунă пĕрремĕш «процесс» пулчĕ çакă. Кун пекки хальччен Раççей Федерацийĕнче ниçта та пулманнине палăртрĕç экспертсем. Çавăнпа-и, тен, икĕ енчен те çитменлĕх чылай.

1) ЧР прокурорĕн çумĕ, юстицин аслă советникĕ алă пуснă заявлениех илер. Чĕлхесем çинчен калакан саккун 1990 çултах вăя кĕнĕ. Йывăррăн пулин те майĕпен пурнăçа кĕрсе пырать вăл. Çав вăхăтрах прокурор çумĕ заявленире 3 пункт (3 абзац) саккунлă мар тесе çирĕплетет. Саккун вăя кĕнĕ, эппин, саккунлах çакă. Юристсем те çирĕплетрĕç çакна.

2) Республикăшăн, унта тымар ярса пурăнакан 68 процент чăваш халăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ саккуна, уйрăмах 3 пункта (3 абзац) айăпласа çырнă документа алă пуснă çын – **Г. Михопаркин** – суд ларăвне хăй пыманни телĕнтерет. Саккун тăрăх ăна пулăшаканĕ улăштарма пултарать тесе ăнлантарчĕç пулин те, тăван халăхне хирĕç пыраканăн сăмахне, шухăшне, хуравĕсене итлени ытлашши пулмастчĕ.

3) Чăваша чăваш суд турĕ. Чăннипех те çапла. **Михопаркин** хăй те (Хĕрлĕ Чутай енчен), прокурор пулăшаканĕ Трофимов та (Сĕрпӳ тăрăхĕнчен), **Е. Петрова** судья та – чăвашсемех. Тăван чĕлхепе калаçса тăван чĕлхене, халăха пĕтерес е упраса хăварас пĕлтерĕшлĕ ыйтăва пăхса тухрĕç. Каллех хăйсене евĕр политика-ши ĕнтĕ çакă? 3 пункта (3 абзац) пăрахăçлани кайран хăйсенех пырса «çапсан»? ЧР прокуратуринче 70 процент чăваш ĕçлет терĕç те, кам пулса ĕçлет-ши çав 70 процент? Ытларахăшĕ «хура» ĕç тăвать ĕнтĕ – иккĕлентермест çакă.

4) Постановленин 3 пунктне (3 абзац) вăтам ăс-тăнлă çын ăнланмалла мар куçарнă (е çырнă). Ахальтен мар пĕтĕмĕшле сахалтан та 15–20 хутчен тимлĕ вулама, вырăсла варианчĕпе танлаштарма тиврĕ лару ĕçне хутшăннисен.

5) 3 пункт пирки çĕкленĕ «шав-шавăн» ырă енĕ те çук мар. Тинех хăшĕпĕри «ăшă ыйхăран» вăранчĕ. Саккуна йышăнни 7-мĕш çул пырать. Хĕрсе кайса калаçтарнă специальноçсен перечене вара хальччен те çук. Пуçланă ĕçе кирек мĕнле пулсан та вĕçне çитермеллех пулĕ? Патшалăх Канашĕн уйрăм комитечĕсĕр пуçне чăвашлăх аталанăвĕ никама та кирлĕ мар пулса тухать. ЧНКпа ЧАП та хăйсем çинчен Мăн Канаш ларăвĕсем умĕн кăна аса илтереççĕ. Тĕрĕссипе чылайăшĕ (çав шутра хайсене тăван халăх патриочĕсем тесе кăкăр çапса çӳрекенсем те) пуш уйăхĕн 28-мĕш кунĕнче иртнĕ суд пĕлтерĕшне ăнланаймасăрах юлчĕ, ăнланасшăн та пулмарĕ пулас. Пикет тавраш ирттерес тени те калаçу шайĕнче кăна юлчĕ.

6) ЧР прокуратури ЧР Аслă судне заявлени тăратни пĕртте вăхăтлă, вырăнлă мар. Çакна ЧР Патшалăх Канашĕпе тӳрремĕн çыхăнса калаçса татса пама та пулнă пек туйăнать. Ахаль те йывăр та кăткăс лару-тăрăва çивĕчлетни кама кирлĕ пулчĕ-ши?

Ĕнер суд ларăвĕ вĕçленчĕ. ЧР Аслă сучĕ ЧР прокуратури тăратнă заявленири ыйтусен пĕр пайне тивĕçтерчĕ.

Лидия ФИЛИППОВА.
*«Хыпар», 1.04.1997, 63№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН ПРЕЗИДИУМĔН ЙЫШĂНĂВĔ

**Чăвашла-вырăсла термин ĕçĕн ушкăнне тăвасси çинчен**

И.Я. Яковлевăн 150 çулне кĕтсе илме хатĕрленĕ икĕ çуллăх планпа килĕшӳллĕн Чăваш наци конгресĕ республикăри хуласемпе ялсенче чăваш сăмахĕ мĕнле илтĕнни-курăннине ятарлă эрнелĕх ирттерсе тĕрĕслерĕ. Чĕлхесем çинчен калакан саккун нихăш енĕпе те тивĕçлĕ шайра пурнăçланса пымасть. Куçа тӳрех курăнаканни – тӳрешаралăхпа, ĕçри вырăнпа çыхăннă ятсем (официаллă номенклатура). Хуласенче, ялсенче, вулавăшсемпе шкулсенче, клубсемпе керменсенче, ĕç вырăнĕсенче тăван чĕлхе хăйĕн вырăнне йышăнайман-ха. Урамсем, çуртсем, пӳлĕмсем умĕнчи ятсем вырăсла кăна, кивĕ, тирпейсĕр. Куçарнă пек туса çакнă кăтартусем чылай чухне юрăхсăр, пуклак. Патшалăх Канашĕ çирĕплетнĕ ĕç планĕсем пурнăçланса пымаççĕ.

Çакна шута илсе Чăваш наци конгресĕн Президиумĕ «Тăван сăмах» ятлă ĕç ушкăнĕ туса хучĕ. Вăл малашне ЧР чĕлхесем çинчен калакан саккунĕ мĕнле пурнăçланса пынине, вĕренӳ кĕнекисем тухнине, курссем ĕçленине тата ыттине тĕрĕслеме пуçлĕ. Малтанласа «Тăван сăмах» ушкăн чăвашла-вырăсла ят-терминсемпе ĕçлекен мĕн пур вăйсене пĕрлештерсе «шĕкĕлчевсем» ирттерсе пăхрĕ, ĕçлеме май пурри палăрчĕ.

ЧНК Президиумĕ çапла йышăнать:

**1.** Чăваш наци конгресĕн «Тăван сăмах» ушкăнĕ хатĕрленĕ ĕç планне ырлас, кашни кĕçнерни каç ЧНК тĕп ĕçтăвкомĕн пӳлĕмĕсенче (Шупашкар, Володарский ур., 5) «çавра сĕтелсемпе» ларусем ирттерме ирĕк парас.

**2.** Хаçат-журнал редакцийĕсене «Тăван сăмах кĕтесĕ» рубрика уçма сĕнес.

**3.** Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнчен «Тăван сăмах» ушкăна (чĕлхесем çинчен калакан саккуна пурнăçа кĕртмелли планпа килĕшӳллĕн) тивĕçлĕ пулăшупа хӳтлĕх пама ыйтас.

**4.**Терминсемпе ĕçлеме çаксене çирĕплетес: А.Н. Аслут (ЧР Патшалăх Канашĕ), В.П. Вадимов (Чăваш Республикин Президент Администрацийĕ), Г.А. Дегтярев (Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн терминсен лабораторийĕ), В.А. Иванов (Чăваш патшалăх университечĕ), О.Г. Кульев («Халăх шкулĕ» журнал редакцийĕ), В.П. Никитин (Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ), Л.П. Сергеев (Чăваш педагогика институчĕ), М.И. Скворцов (Вĕрентӳ институчĕ), А.С. Смолин (Республика Президенчĕн Администрацийĕ), Г.С. Федотов («Хыпар» хаçат редакцийĕ), П.Я. Яковлев (Чăваш патшалăх университечĕ).

ЧНК вице-президенчĕ В. СТАНЬЯЛ.
*«Хыпар», 4.04.1997, 66№.*

# ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН ХЫПАРĔСЕМ

*Чăваш наци конгресĕн тĕп ĕçтăвкомне (секретариата) кунсеренех çыру, телеграмма, шăнкăрав килсе тăрать. Вĕсенчен хăш-пĕринпе паллашма сĕнетпĕр.*

**Хамăрьялсем ăçта? Тĕменре**

Наци культура автономийĕсем çинчен çĕнĕ саккун тухсан Тĕмен (Тюмень) хулинче пурăнакан чăвашсем облаçри культура центрĕн ĕçне çĕнĕлĕхсем кĕртме шутланă. Шутланă та – тунă. Хулара пĕлтĕрхи çулларанпа чăваш çыннисен пĕрлĕхĕ (общини) ĕçлет. Ăна «Хамăрьял» ят панă, пуçлăх пулма Михаил Кузнецова суйланă.

Тĕп хулари «хамăрьялсем» канăça пĕлмеççĕ. Вĕсем облаçри чăваш пĕрлĕхĕн уявĕсене, пухăвĕсене хастар хутшăнаççĕ, çав вăхăтрах хăйсем те Тĕменре пысăк тĕл пулусем, «çавра сĕтелсем», уявсем, куравсем йĕркелеççĕ.

Пĕрлĕх пуçлăхĕ Михаил Фадеевич телефонпа пĕлтернĕ тăрăх, И.Я.Яковлев çуралнă кун тĕлне «Чăваш кĕнеки» уяв ирттерме палăртнă.

«Хамăрьял» хастарĕсем çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕсенче облаçри чăвашсен 6-мĕш акатуйне хутшăнаççĕ. Акатуй кăçал таврари паллă ялта – Григорий Распутин çуралнă Пукравккара иртмелле. Пукравккасем Шупашкар ăстисене те кĕтеççĕ. Вĕсем Анатолий Смолин поэта манман-ха.

Тĕменри «хамăрьялсен» хăйсен пултарулăхне кăтартма кĕркунне Чăваш Республикине килес шухăш пур. Вĕсен «тĕп килтен» уйрăм пурăнас килмест.

**Акă сана тамаша!**

– Тамаша мар, «Тамаша»! – теççĕ Анат Камăра. – Чăнласах пысăк театр, халăх театрĕ!

– Чăнах, чăнах, – çирĕплетрĕ Анатолий Ыхра сăвăç. – Удмуртири Пархатар ялĕнче куртăм вăл театр артисчĕсем вылянине. – Пархатарсен куççуль тухрĕ. Пĕрремĕш хут чăваш спектаклĕне пăхрăмăр терĕç.

Тутарстанри, Пушкăртстанри, Самарти вун-вун ял «Тамаша» ятлă халăх театрĕн спектаклĕсене кăмăлласа пăхнă. Шупашкарпа Лапсар халăхне те «Тамаша» концертсемпе, спектакльсемпе савăнтарчĕ.

Анат Камăсен халăх театрне Наталия Зотеева режиссер ертсе пырать. Хăй вăл Аксу хутлăхĕнче çуралса уснĕ, Хусанта аслă пĕлӳ илнĕ, шкулта 36 çул физикăпа математика вĕрентнĕ. Пенсие тухнă хыççăн Наталия Александровна Анат Камăри 25 ăста чăваша пухса шилĕкре вылякансен ушкăнне йĕркеленĕ, ача-пăчан «Шăнкăрав» ансамбльне йĕркелеме пулăшнă.

Халĕ «Тамашапа» «Шăнкăрав» – Тутарстан чăвашĕсен элемĕ! Вĕсене кирек ăçта та хапăлласа кĕтеççĕ. Н.А. Зотеевăна Чăваш наци конгресĕпе Чăваш тавра пĕлӳçисен пĕрлĕхĕ наци культурине пуянлатнăшăн «Чăваш халăхĕн ăс-хакăл ăсти» хисеплĕ ят панă.

Çынсем шилĕкре вылясах чапла ят илеççĕ иккен. Акă сана «Тамаша»!

**Çтуххальсем çĕнтереççĕ**

Самар облаçĕнчи Похвиçнĕ хутлăхĕнче Çтуххаль ялне пĕлмен чăваш çук. Кунта ĕлĕкренпех тăван сăмахлăхпа кăсăкланнă. Лучковсен килне «Нарспи» поэма авторĕ К.В. Иванов килсе çӳренĕ, ку ялта чăвашсен паллă çыравçи Вениамин Погильдяков çуралса уснĕ.

1975 çултанпа ялта «Çтуххаль» ятлă халăх театрĕ ĕçлет. Ăна шкулти учитель-историк Евгений Ижмуков режиссер ертсе пырать. Пархатарлă ĕçĕпе Евгений Демьянович Раççей Федерацийĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ пулса тăнă.

20 çул хушшинче «Çтуххаль» 35 пьеса тăрăх тĕрлĕ жанрлă спектакль лартнă. Репертуарта камитсемпе кулăшсем, трагикамитсемпе драмăсем, халăх йăли-йĕркин уявĕсем тата ытти те пур. Вĕсене кирек хăçан та, кирек ăçта та халăх хапăлласа пăхать. Театр Похвиçнĕ, Исаклă, Клевлĕ, Шунтал, Чаллăпуç, Хăмăшлă районĕсенче нумай-нумай хут пулнă. Облаçри театр ушкăнĕсен Тольяттири çулленхи ăмăртăвĕнче тата Вяткăра ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри фольклор театрĕсен фестивалĕнче Диплом илнĕ.

Пĕлтĕр «Çтуххаль» Константин Ивановпа Ухсай Яккăвĕн тăван ялĕнче – Пушкăртстанри Слакпуçĕнче хăнара пулнă. Унта театрта чĕрĕк ĕмĕре яхăн вылякан Валентина Обухова, Иван Ильин ăстасене, каярахпа палăрнă Наталья Лучкова, Нина Этнюкова, Георгий Семенов, Наталья Куракова, Алексей Убаков, Ольга Яндулкина тата ытти шилĕкçĕсене халăх чĕререн тав тунă.

«Çтуххаль» ертӳçи Евгений Ижмуков – тĕрлĕ енлĕ ăста. Вăл тăван ял историне çырса пĕтернĕ. Çтуххаль çинчен районти тата облаçри хаçатсенче кăсăк статьясем пичетленĕ. Тăван тавралăх тĕпчевĕпе учитель «И.Я. Яковлевăн 150 çулне – тăван ырăнсен историйĕ» конкурса хутшăнать.

Виталий СТАНЬЯЛ, ЧНК вице-президенчĕ.
*«Хыпар», 25.04.1997, 83№.*

# ЧНК ПРЕЗИДИУМĔН ЙЫШĂНĂВĔ

Чăваш наци конгресĕн Президиумĕ хăйĕн черетлĕ ларăвĕнче Чăваш Республикин Президенчĕн ĕçне кӳлĕнме хатĕр кандидат çинчен калакан документа тĕплĕн сӳтсе явнă хыççăн çакăн пек пĕтĕмлетӳ туса чăваш халăхне, Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссине хăйĕн шухăшне уççăн пĕлтерме йышăнчĕ:

**1.** Документа вырăс чĕлхипе кăна çырса хатĕрлени чăваш халăхне, культурине, чĕлхине хисеплеменни пулать; пирĕн халăхран уççăн тăрăхлама хăтланнине пĕлтерет; чăваш халăхĕн тĕп интересĕсене пачах та шута илменни шутланать.

**2.** Документра кандидат патшалăх чĕлхине пĕлмелли çинчен калакан йĕркене сиктерсе хăварни – вырăнсăр, мĕншĕн тесен халăх чĕлхипе калаçман çын унăн историне те, паянхи пурнăçне те, пуласлăхне та упрас çук, вăл центр тĕллевĕсене çеç пурнăçлама тăрăшĕ.

**3.** Документ кандидат Чăваш Енре çуралса ӳссе, ял-хулана аталантарма тар юхтарса вун-шар çул ĕçлени çинчен хуравламасть, çичĕ юта чăваш çĕрĕ çине килсе хуçаланма, чăваш халăхне пусмăрлама çул уçать.

**4.** Документра çав вăхăтрах кандидат ăсчах пулнине е пулманнине пĕлтерни кирлех мар; ăслă та ĕçчен çыннăн яланах доцент е профессор аттестачĕ пулмасть; чăваша, хуçалăха, халăха ăнланакан ертӳçĕ кирлĕ.

**5.** Документ кандидат мĕнле парти е блок ретĕнче тăнине тĕп вырăна хуни те илемсĕр, халăха ертсе пыма пултарнине ушкăнпа çыхăнтарма кирлĕ мар.

Çапла вара Тĕп суйлав комиссийĕ йышăннă документ унăн авторĕсен культура шайĕ çителĕксĕр пулнине, вĕсем гуманизм мĕн иккенне пĕлменнине кăтартать. Вĕсене пирĕн республикăн çĕрĕ-территорийĕ-пурлăхĕ кăна кирлĕ, вĕсемшĕн чăваш халăхĕ çук, вĕсем тĕнчипе паллă ăсчах В.Г. Егоров профессор вĕрентĕвне – «вырăс чĕлхи чăваш чĕлхи вырăнне мар, унпа юнашар пулмалла» – пĕлмеççĕ, чăваша хĕсĕрлес политикăна ырлаççĕ.

çавӑнпа та Чӑваш наци конгресӗ Тӗп суйлав комиссине асӑннӑ документа пӑрахӑçлама ыйтать. Ӑна чӑвашла-вырӑсла çырас, 7-мӗшпе 8-мӗш пунктсене кӑларса пӑрахас, кандидат патшалӑх чӗлхине пӗлнипӗлменнине тата Чӑваш çӗрне хӑçан килнине палӑртас. Ку вӑл – тӗнче стандарчӗ, йӑла-йӗркепе çыхӑннӑ, мораль саккунран вӑйлӑраххине çирӗплетни. Чӑваш чӗлхине пӗлни – пулас президентӑн квалификаци норми: юрлама пӗлмен çынна хора илмеççӗ, ярӑх спортсмена олимпиадӑна чӗнмеççӗ, ют чӗлхе пӗлмен çынна ют чӗлхесен кафедринче ӗçлеме хушмаççӗ, пӑшал тытман çынна сунара ямаççӗ т.ыт.те.

Чӑваш наци конгресӗ тепӗр хут ЧР Тӗп суйлав комиссине çапла пӗлтерет: Чӑваш чӗлхи – патшалӑх чӗлхи, çавӑнпа та ӑна пирӗн патшалӑхра кашни ертӳçӗн пӗлмелле. Документа пӗр чӗлхепе çырса кӑларни хӑех вӑл Чӑваш Республикин Тӗп суйлав комиссийӗнче хӑравçӑ чӑвашсем ларнине уççӑн кӑтартать, вӗсем чӑваша хисеплеменни палӑрать, чӑваш йӑвашлӑхӗпе усӑ курса чӗлхесӗр этеме президент тума хатӗр пулас. Комиссие çак кӑлтӑкшӑн саккунпа явап тыттармалла.

Чӑвашсем, суйлав çывхарса килет, ултавпа чӑнлӑха уйӑрма пӗлер, сыхӑ пулар.

*«Хыпар», 18.09.1997, 191№.*

## «ӐСПА ЧУЛ КАС ТА ВУТ КӐЛАР!»

*1997 çулхи юпа уйӑхӗн 24–25-мӗшӗсенче Шупашкарта Чӑваш наци конгресӗн виççӗмӗш Аслӑ пухӑвӗ (вӑлах – Раççей Федерацийӗнчи Чӑваш наци культура автономийӗсен йӗркелӳ пухӑвӗ) иртмелле. Чӑвашсем чылайӑн пурӑнакан вырӑнсенчи пухусемпе конференцисенче делегатсене суйлаççӗ. Хӑш-пӗр республикӑсемпе облаççене ЧНК йыхравӗсем кайнӑ та ӗнтӗ. Чӑваш халӑхӗн Аслӑ пухӑвӗ çинчен каласа пама пирӗн корреспондент Чӑваш наци конгресӗн вице-президентӗнчен В.П. СТАНЬЯЛРАН ыйтнӑ.*

– Чӑваш наци конгресне йӗркеленӗренпе пилӗк çул иртрӗ. Çак хушӑра вӑл чӑваш тӗнчине пысӑк витӗм кӳчӗ, тӑван халӑхӑн ӑс-хакӑлне вӑратрӗ, тӑванлӑх туйӑмне вӑйлатрӗ. Наци ӑнланулӑхӗпе чӑваш чӗркуççи çинчен ура çине тӑчӗ тесех каламалла. 20-мӗш ӗмӗрӗн 5–20-мӗш çулӗсенче палӑрнӑ хастарлӑх çӗнӗрен чӗрӗлчӗ, малалла аталанчӗ. Халӗ кирек ӑçти чӑвашсемпе те çыхӑну пур. Сапаланчӑк пурӑнакан йӑхташсем ентешлӗхсем, центрсем, пултарулӑх ушкӑнӗсем йӗркелерӗç. Фольклор шайӗнчен хӑпарса вӗренӳ ӗçне сарса пыраççӗ: чӑваш класӗсем, шкулӗсем, факультечӗсем çулсеренех усӑлчӗç. И.Я. Яковлевӑн 150 çулӗ тӗлне вӗрентӳ ӗçӗн икӗ çуллӑхне пӗлтерсе ЧНК питех те тӗрӗс турӗ.

Наци юхӑмӗнче çӗнӗ тапхӑр çитрӗ. Çакӑ Раççей Федерацине наци культура автономийӗсем çинчен саккун кӑларма хистерӗ. Çав саккунпа килӗшӳллӗн Мукавра, Хусанта, Самарта, Чӗмпӗрте чӑваш наци культура автономийӗсем йӗркелерӗç. Ку енӗпе çывӑх вӑхӑтра Тюменьте, Пушкӑртстанра, Мари Элте конференцисем иртмелле. Вӗсен пӗлтерӗшӗ пысӑк. Унта вырӑнти чӑваш пӗрлӗхӗсен ӗçне-хӗлне пӗтӗмлетеççӗ, малашнехи ӗçсене палӑртаççӗ.

**– ЧНКн черетлӗ пухӑвӗ чӑваш тӗнчишӗн мӗнле те пулин курӑмлӑ ӗç туса ирттерессе шанатӑр-и? Каллех ячӗшӗн шӑв-шав кӑларни пулмӗ-и?**

– Шанман ӗçпе кам аппалантӑр! Шаннӑран туртса пыратпӑр та ӗнтӗ çак лава. Мӗнле ӗç туса ирттермелле? Пуху ыйтусене тӗрӗс, кирлӗ пек татса парать пулсан – ӗç туни пулать те. Унӑн пайти халӑх шухӑшне, тӗллевне, талпӑнӑвне çул кӑтарса панинче, йӑхташӑмӑрсене пӗрлештерме пултарнинче. Пирӗн ӗçре шавӗ те, чанӗ те, параппан йыхравӗ те ытлашши мар. Сассӑмӑр хальлӗхе кирлӗ чухлӗ çук-ха. Уйӑхӗ-уйӑхӗпе хыпар памасӑр тӑратпӑр. Хамӑрӑн хаçат çук тесе тунӑ ӗçсене те халӑха пӗлтермесӗрех хӑваратпӑр.

**– Виталий Петрович, Чӑваш Республикин тата Раççей Федерацийӗн прокуратурисем «Чӑваш Республикин чӗлхесем çинчен», «ЧР Президенчӗ çинчен» саккунсене пӗтӗмӗшле пӑрахӑçларӗç тесен те йӑнӑш мар. ЧНК, чӑвашлӑхӑн тӗп вӑйӗ тетпӗр ӑна, мӗншӗн судра хӑйӗн вӑйне кӑтартаймарӗ? Çине тӑни çук-и, вӑхӑт çук-и?**

– Правасӑр патшалӑх, правасӑр халӑх шайӗпе пурӑнатпӑр. Эпир «шурӑ» тесе каланине пӑхӑнтарас ӗмӗтлӗ Мускав улпучӗсем çине тӑрса «хура» та «хура» тесе лараççӗ. Вӑл та сахал, чӑваш юрисчӗсемех тӑван чӗлхене, тӑван республикӑна хур тума хӑтланаççӗ. Пичӗсене кӗççе çакса ямалла, ячӗсене намӑс хӑми çине кӑлармалла! ЧНК канашçисем хушшинче хастар, ӑслӑ çынсем пайтах. Вӗсем тӗрӗсмарлӑха шарламасӑр, курмӑш туса хӑвармаççӗ. Хальлӗхе халӑх сӑмахне халӑх депутачӗсем те итлемеççӗ-ха. Патшалӑх Канашӗнче миçе депутат тӑван чӗлхешӗн, чӑваш танлӑхӗшӗн тӑрать? Халӑх çакна хӑй ӑнкарса илмесӗр, хӑйшӗн хӑй тӑма пуçламасӑр тӳнтер çӑпансене шӑтарса кӑлараймӑпӑр. Шел те, çынсен ытларах пайӗ çак пурнӑçри хӑш ӗç хура, хӑш ӗç таса пулнине çаплах ӑнкараймасть-ха. Суйлавсем вӑхӑтӗнче чӑваш мӗнле пӑтранниех çавна кӑтартать-çке! Интеллигенци те тӗрӗслӗх тӗшшине вӑхӑтра катса кӑлараймасть, прессӑри суя хыççӑн сӗтӗрӗнет, хӑвӑрт сутӑнать. ЧНК тавра пӗтӗçнӗ ӑстасем, шӗкӗр турра, наци идейисене тӗплӗ ӑнланаççӗ, ӗçӗсене курӑмлӑ тӑваççӗ. Эпӗ пин-пин тӗслӗх илсе кӑтартма пултаратӑп – Мурманскри чӑвашсенчен пуçласа Кемӗр, Чукотка таранах!

**– Калӑр-ха, пур-и пирӗн чӑн-чӑн Чӑваш Çынни? Кам вӑл?**

– Мӗнле мӑскалпа виçтересшӗн-ши эсир чӑвашлӑха? Охатер Томеев е Тойтерек пӑлхавçӑсем чӑн чӑвашсем-и? Бичурин, Изотов, Егоров тӗпчевçӗсем чӑн чӑваш-и? И.Я. Яковлев чӑн чӑваш çынни-и? М. Юман, Г. Алюнов, А. Гаврилова, Çеçпӗл, Митта, Ухсайпа Хусанкай чӑн чӑвашсемех-и? Вӗсен ӗçне малалла тӑсакансем паян теçеткипе. Вӑхӑт чи хастаррисене, талантлисене каярахпа Чӑн Чӑвашсен ретнех лартӗ-ха. Эпӗ кашни ялтах, кашни хутлӑхрах кӗрешӳçӗ те ӑслӑ чӑвашсене пайтах тӗл пулатӑп. Чӑн Чӑваш тесе паллӑ ӑстасене, чаплӑ вырӑнта ят илнӗ çынсене çеç каламӑпӑр. Хресчен, рабочи, сутуçӑ, ӗçлӗ çын, аслӑ шкулта вӗренекен тата вӗрентекен хушшинче кирек хӑш сийре те чӑнласа элтешлӗх (гражданлӑх) туйӑмӗллӗ чӑваш нумай. Наци ыйтӑвӗсене патшалӑх ӗçӗпе çыхӑнтарма, халӑха йӗркелеме, экономикӑпа культурӑн, халӑх хуçалӑхӗн çивӗч нушисене ӑнӑçлӑ татса пама пӗлекен кӗрешӳçӗ çынсене Чӑн Чӑвашсен ретне тӑратӑттӑм. Шел, район, республика шайӗнчи ертӳçӗсем хушшинче кулленхи вӗçӗ-хӗррисӗр хӑшкӑлӑва чӑваш шӑнӑрӗ çине тирме пултаракансем çителӗксӗр. Вӗсем пур, сахал та мар, Элӗкре, Етӗрнере, Çӗрпӳре, Шупашкарта. Тинкерсе пӑхӑр-ха. Асӑрхарӑр-и?

**– Чӑваш Президенчӗ чӑвашла пӗлмесен те пултарать, вӑл аякран килнӗ çын пулсан та юрать иккен. Мӗнле хаклатӑр çакна?**

– Ку ыйтупа ЧНК Президиумӗнче ятарлӑ калаçу пулчӗ. Пирӗн йышӑну «Хыпарта» тухнӑччӗ. «Çармӑс синдромне» эпир сивлетпӗр. Грузире грузинла, Тутарстанра тутарла пӗлмен элтепер пулма пултарайман пекех, Чӑваш Республикинче те тӗп çынсем «почтӑпа ярса панисем» пулмалла мар. Колонизаци айӗнчи халӑх кӑна çав мӑшкӑла чӑтма пултарать.

Раççей Федерацийӗнче тӑни Чӑваш çӗр-шывӗпе халӑхӗ хӑйӗн сӑнсӑпатне çухатмаллине пӗлтермест. Паян сӑмах тулай халӑхсем те хӑйсен ӑс-хакӑлне, чӗлхине, йӑли-йӗркине, наци пахалӑхне упрасси, пуянлатасси çинчен пырать. Наци культура автономийӗсем çавна пурнӑçлама кирлӗ.

**– Наци культура автономийӗсем çинчен тӗплӗнрех каласа парӑр-ха. Мӗн парать вӑл халӑха?**

– Наци культура автономийӗсем çинчен калакан саккун сапаланчӑк пурӑнакан йӑхташсене хайсен культурин техӗмӗпе ырӑ курма ирӗк парать. Вӑл пысӑк хуласенчи, тӗрлӗ вырӑнсенчи пӑтти-пат саланнӑ ентешсене хӳтте илет. Анчах чӑпайӑн, ял-ялпа чӑмӑртанса пурӑнакан халӑхсене территори автономийӗ кирлӗ. 1934 çулччен Чӑвашстанра Шӑнкӑртам тутар районӗ, Самар, Чӗмпӗр облаçӗсенче, Çӗпӗрте чӑваш ял канашӗсем, чӑваш районӗсем йӗркеллӗх пурӑннӑ. Унти шкулсенче чӑвашла вӗрентнӗ, хаçачӗсем чӑвашлах тухнӑ. Халӗ те çаплах кирлӗ. Вара чӑвашлӑхӑн пин-пин ыйтӑвӗ йӗркеллӗн татӑлнӑ пулӗччӗ. Мускав апла тутарасшӑн мар. Тан шайра туслӑ пурӑнас текенсене хӑй айне пӗтӗрсе чиксе усрасшӑн. Демократиллӗ, право патшалӑхӗнче танмарлӑх пулмалла мар. Халӑхсене пӗр вӗçӗмрен пӗрле çӗртенех темиçе тӗрлӗ администрацие пайласа янӑ. Шӑмӑршӑпа юнашар Çӗпрел, Чӑнлӑ, Пӑва районӗсенче чӑвашсем ытларах пулсан та – Тутарстанпа Чӗмпӗр

облаçне, пĕр-пĕринпе тачă юнашар чăваш çĕрĕсене (Çарăмсан, Нурлат, Шунтал тата ыттисене) пĕрне Тутарстана, теприсене Самар облаçне кĕртсе янă. Ăнсăртран мар, тата географи хистенипе те мар!

**– Апла эсир «Пысăк Чăвашстан» планне пурнăçа кĕртесшĕн пулĕ?**

– Чĕмпĕре шĕкĕр хула туса 1920 çулта Пысăк Чăвашстан чăнах та çуралма пултарнă. Ун чухне ыйтăва ăслă татса панă пулсан пирĕн чылай нуша пачах пулмастчĕ. Чавса çывăх та – çыртма çук. Хăй хўрине тытма хăтланакан йытă пек пĕр вырăнта çаврăнса пурăнни те юрăхсăр. Хальлĕхе тулайсен наци культура автономийĕсен картине кĕме тăрăшмалла. Халăх шутне кура депутатсен тата ертўçĕсен вырăнĕсене çĕнсе илмелле, ертўçĕре тухăçлă ĕçлеме пултаракан кадрсем хатĕрлемелле, наци автономийĕсен йĕркине туса çитермелле, хамăрăн пурнăç йĕркисене çирĕплетсе хăвармалла. Тĕслĕхсем пур-çке! Мĕншĕн тутарсенчен, еврейсенчен ўксе юлмалла?

«Пысăк Чăвашстан» ыйтăвне ЧНК иккĕмĕш съездĕнчех хускатнăччĕ. Ман шугпа, территори чиккисемсĕрех халĕ 1924 çулхи карттăринчен пысăкрах Чăвашстан чăмăртанать. Вăл мĕн тума кирлĕ? Ытти халăхсемпе тан аталанса пыма, тан шайра туслă-хурăнташлă пурăнма, наци ăс-хакăл пуянлăхне тĕнчери культура пуянлăхĕ туса хума.

Раççей нумай енчен 300–400 çула кая кайса ларчĕ. Раççей геополитики «вак халăхсене» хўтĕлемест. Хамăрăн хўтĕленес пулать. Обществăсем, ентешлĕхсем, центрсем туни халăх дипломатийĕн фольклор шайĕнчи пĕрремĕш утăмĕ пулчĕ. Наци культура автономийĕсене ял, район, облаç, республика тата Федераци шайĕсенче йĕркелени халăхпа патшалăх пĕрле тăвакан иккĕмĕш утăм – вĕрентў шайĕнчи утăм пулĕ. Виççĕмĕш утăмĕ XXI ĕмĕрте çитĕ, вăл этноссене тан аталантаракан патшалăх туса хурĕ. Раççейре мăрикансен йышши паспортсăр, этноссăр штатсем пулмалла текенсем е пирĕн историе пĕлмеççĕ, е Раççее тата шаларахран аркатас теççĕ.

**– Сирĕн шутпа, Виталий Петрович, Чăваш наци культура автономийĕсен Раççейри пĕрлĕхĕн тытăмĕ мĕнле пулмалла? ЧНКА-на ЧНК пĕрлешеççĕ-и, пĕри пĕтсе тепри вăйланать-и е иккĕшĕ уйрăм тытăмсем пулса юлаççĕ-и?**

– Раççейри тулай чăваш наци культура автономийĕсене йĕркелесе тăракан тытăм тĕрлĕрен пулма пултарать. Ман шутпа, хăçан та пулин çĕр-шыв 20-30-мĕш çулсенчи «наркомнацăн» çĕнетнĕ вариантĕ патнех таврăнĕ-ха. Йĕркеллĕ, пур халăхсене те тан картса, хисеплесе, çул парса пурăнас пулсан, çав çултан тĕрĕсси тупăнас çук. Ун чухне Мускавра наци ĕçĕсен комиссариатĕнче Чăваш пайĕ ĕçленĕ, унтах чăвашла тĕп журналпа хаçат тухса тăнă. Çав Чăваш пайĕ ытти çĕрти чăваш пайĕсене (мĕн пур чăвашсене) пĕрлештерсе тăнă.

Хальхи лару-тăрăва илес пулсан – нацие пĕрлештерекен Тĕп штаб ятлă (титуллă) республикăра вырнаçмалла: тутарсен – Тутарстанра, пушкăртсен – Пушкăртстанра, чăвашсен – Чăваш çĕрĕнче.

Чăваш наци конгресĕ 1992 çултах Шупашкарта диаспорăпа тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитет (министерство) тумалли пирки йышăну кăларчĕ. Ман шутпа, вăл Республика Президенчĕн аппарачĕ çумĕнче пулмалла, ытти чылай министерствăсен (Финанс, Культура, Вĕрентў, Физкультура, Çамрăксен, Ал ăсталăхĕн) вăйне пĕрлештерме пултармалла. Ăна вице-президент е вице-премьер шайĕнчи çын ертсе пымалла.

**– Вара ЧНК та, ЧНКА та кирлĕ пулмаççĕ мар-и? Наци ыйтăвĕсен комитечĕ тулай чăвашсен (диаспорăн) ыйтăвĕсене те татса пама пултарать-çке!**

– Паллах, Наци комитечĕн (министерствин) тулай ыйтăвĕсемпе ытларах та ĕçлемелле пулса тухать. Хамăр республикăра тĕрлĕ халăхсен хутшăнăвĕ ĕмĕртенпех туслă тăрать, кунта татса пама йывăр ыйтусем сиксе те тухмĕç. Çурри ытла аякка сапаланнă йăхташсемпе ĕçлесси вара нихçан та йĕркеллĕ пулса пыман. Çавăнпа халăха пĕрлештерекен Тĕп штаб вырăнне Чăваш наци конгресĕ ĕçлерĕ. Вăлах Раççей Федерацийĕнчи чăвашсен регионсенчи автономийĕсене пĕрлештерекен вăй пулса тăчĕ. Çапла вара, ман шутпа, тĕнчери чăвашсене тата Раççейри чăваш наци культура автономийĕсене малашне те Чăваш наци конгресĕсех пĕрлештерсе тăма пултарать. Вăл малашне те наци ăслă органĕ пулса юлмалла. Урăхла вариантсенчен ку чи лайăххи. Чăваш Республикин наци ыйтăвĕпе ĕçлекен пайĕн (вăл халĕ Культура министерстви çумĕнче) ытти çĕр-шывсен ĕçне тўрремĕн хутшăнма право çук. Çавăнпа ăна халăх (общество) организацийĕпе чăваш автономийĕсен тĕп ĕçтăвкомĕпе пĕрлештермелле. Мĕне пĕлтерет ку? ЧНКА тĕп ĕçтăвкомĕнчи темиçе вырăна ЧР Патшалăх укçи-тенкипе тытса тăнине. Чăваш Республикин Наци комитечĕн (Конгресс) Мускаври Миннац (Наци ыйтăвĕсен министерстви) çумĕнчи тĕп специалистпа тачă ĕçлемелле. Патшалăхпа халăх органĕ пĕрле ĕçлени пĕтĕм нацишĕн тата Раççейшĕн питех те усăллă пулĕччĕ. Ку йĕрке демократиллĕ çĕр-шыв принципĕсене пĕрре те хирĕçлемест.

**– Патшалăхпа халăх тытса тăракан Конгресс тулайсемпе мĕнле ĕçлесе каясси мана иккĕлентерет. Тĕслĕхсемпе кăтартса парăр-ха – мĕн тăвать вăл?**

– Халăхпа патшалăх халĕ мĕн тăвать – çавсене йăлтах тăвать. Тĕслĕхе вĕрентў ĕçне илĕпĕр. Ку тапхăрта, И.Я. Яковлевăн 150 çулĕ умĕн, пирĕншĕн вăл питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Конгресăн патшалăх тытса тăракан Вĕрентў инспекторĕ пулмалла. Вăл тулайри чăваш шкулĕсемпе Н.И. Золотницкипе И.Я. Яковлев пек ĕçлĕ. Вĕсене усма, лартма, кĕнеке тупма, вĕрентўçине хатĕрлеме пулăшĕ. Ку ĕçе ытти облаçсемпе республикăсен çавăн йышши органĕсемпе килĕштерсе тăвĕ. Хальлĕхе ку ыйтупа ятарласа ĕçленине курмастăп. Çавăнпа пăтăрмах вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлса пырать.

Тепĕр тĕслĕх культура енĕпе илĕпĕр. Халĕ чăваш артисчĕсем тулая тухса çўреççĕ, кам мĕнле пĕлнĕ йĕркеленеççĕ. «Культура инспекторĕ» ятарласа çак ĕçпе ларас пулсан вăл çул кăтартса тăрĕччĕ. Вырăнти ансамбльсене, центрсене, пултарулăх ушкăнĕсене куллен пулăшу парĕччĕ, вĕрентў курсĕсем йĕркелĕччĕ, тулай чăваш ялĕсене кадрсемпе çирĕплетес тесе тăрăшĕччĕ. Тутарстанра, Пушкăртстанра, Самарта Чăваш театрĕсем усĕччĕ.

ЧНКА пĕрлĕхĕн, унăн тĕп ĕçтăвкомĕн малашлăхĕ пысăк. Вăл патшалăх политикине халăх нушипе çыхăнтарĕ, халăх ĕçне патшалăх шайне хăпартса тăрĕ.

Лидия ФИЛИППОВА калаçнă.
«Хыпар», 3.10.1997, 202№.

# ЭПИР – ПĔР ХАЛĂХ АЧИСЕМ

**(ЧНК III Аслă пухăвĕ умĕн шухăша кайни)**

Ырă çыннăмăрсем, тăвансем!

ЧНК III Аслă пухăвĕ яланхи пекех наци аталанăвĕн тĕп çул-йĕрне, культурăпа чĕлхе малашлăхне, республикăн чăн-чăн суверенитетне, наци пĕрлĕхне палăртас тата çирĕплетес тĕллеве хăй умне лартать. Ку пирĕн тĕрек, 1992 çултан пыракан шухăш-ĕмĕт.

Пире, тĕнче тăрăх сапаланнă чăвашсене, çак ыйтусем хумхантарма, хускатма тивĕç. Мĕнле шайра лартма пултарăпăр эпир вĕсене – ку пĕтĕмпех хамăртан килет. Анчах иккĕленместĕп: эпир мĕскĕн халăх мар... Халăх йышĕпе кăна мар, чĕрĕ чăвашлăх палăрăмĕпе те.

Пурнăç Ĕç, Пурлăх çинче тытăнса тăрать. Атăлçи Пăлхарăн та, авă, экономика, суту-илў ĕçĕ вăйлă аталаннине кура культури те хăват илме пултарнă. Чăваш çынни ĕç ăшĕнчен тухаймасть пулин те пурлăхĕ çукрах унăн. Пире хăвăра хăвăр тăрантараймастăр тесе хăртаççĕ. Хăйне хăй тăрантарайман халăх тĕнчере çук. Республикăри улăп-заводсем хамăра усă кўмеççĕ, пин-пин чăваш рабочийĕ ĕçлекен трактор завочĕ кăларакан япаласене туянсах каймаççĕ. Ку лару-тăрăва Раççейĕн хальхи влаçĕ туса панă. Ял хуçалăхĕнче лару-тăру йывăр, бюджетран укçа илекен çынсен пурнăç çăмăл мар.

Наци пĕрлĕхĕ е, урăхла каласан, тăванлăх туйăмĕ ĕмĕртен пыракан пулăм. Ку тĕлĕшпе манăн хамăн пĕчĕк «теори» пур. Пурăнан пурнăçра арканми чĕрĕ «хăватсем» пур. Вĕсен йĕрки çавăн пек. Уйрăм этем тата

унăн гражданлăхпа политика прависем. Çак правасем уйрăм çын харпăрлăхĕ çинче никĕсленеççĕ. Çемье, тăван йăх вăл этем обществин чи пĕчĕк пĕрлĕхĕ пулса тăрать. Кунта та ăруран ăрăва куçса пыракан уйрăм çын харпăрлăхĕ никĕсре тăрать. Наци, тăван халăх – унăн пĕтĕм тĕнчери саккунсем тăрăх хăй тĕллĕнлĕх (суверенитет) прави пур, апла тăк кашни халăх никама пăхăнман, ирĕклĕ патшалăхра пурăнма тивĕç. Экономика енĕпе пăхас пулсассăн суверенитет правине çак халăх хăй ĕçлесе тунă наци пурлăхĕ çирĕплетет. Пирĕн тĕнче правин субъекчĕ пулмаллах.

Колони е хальхи пек çурма колони тытăмĕнче пурăнатпăр пулсан, паллах, наци пурлăхĕ пирки калаçмалли те çук. Такамшăн ĕçлетпĕр эпир, такама тăрантаратпăр, тĕрлĕ налук хыраççĕ пиртен. Чăваш вăл питĕ ĕçчен-çке (иртнĕ вăхăтпа калас килмест!). Çакна шута илсен пирĕн тĕп тĕллев ирĕклĕх пулмалла. Ирĕклĕх тени вăл абстрактлă япала мар. Чи малтан вăл хăйĕн çĕрĕ çинче пурăнакан халăх хăйĕн шăпин тата наци пурлăхĕн чăн-чăн хуçи пулнине пĕлтерет. Ирĕклĕх ăнлавăн çавăн пекех экономикăпа политика аспекчĕсем те пур паллах.

Çаксем пирки Чăваш наци конгресĕн III Аслă пухăвĕ вăйлă, çивĕч каласа хăварĕ хальхи влаçа. Çакна шанас килет. Хамăрăн шухăша, хамăрăн позицие кăшкăрмасăр, анчах çирĕппĕн палăртас пулать.

Чăваш халăхĕн çурри Республика тулашĕнче пурăнать. Чăваш теме пулать-ши халь вĕсенчен чылайăшне, тăван чĕлхепе калаçма, çырма пĕлменскерсене, чăваш пурнăçĕпе пурăнманскерсене?

Ку – тепĕр пысăк ыйту-ырату. «Тĕп» чăвашсемпе (Чăваш Республикинче пурăнакансемпе) тулайра пурăнакан чăвашсен çыхăнăвне çĕнĕлле йĕркелесси. Наци пĕрлĕхне халĕ пирĕн çĕнĕ майсемпе аталантарас пулать. Чăвашлăха саракан информаци хатĕрĕсем (хаçат-журнал, телекурăм, радио) кирлĕ, халăха вĕрентес ĕç наци тĕллевлĕ пултăринччĕ. Суверенлă патшалăхсемпе экономикăпа сутуилӳ çыхăнăвĕсене йĕркелесси тата пур енĕпе те пире ăслă, хастар, хальхилле шухăшлакан çĕнĕ чăваш çыннисем кирлĕ. Çĕнĕ ӳсĕмри политиксем, укçа шутлакансем, экономистсем, хаçатçăсем, юристсем, культура çыннисемпе тĕпчевçĕсем.

Паллах, Республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсен хăйсен нушиинкекĕ питĕ нумай. Тăван чĕлхене туллин – литература чĕлхи шайĕнче – пĕлменни, сăмахлăха вĕренменни, культурăран ютшăнни, чăвашлăха пытарни тата ытти те. Анчах вĕсене çаксемшĕн айăплама чĕлхем çаврăнмасть.

Тата мĕне пĕлтерет çак ăнлав – «чăваш пурнăçĕпе пурăнни е пурăнманни»? Элле, эпир кунта, «тĕп Чăвашра», чăваш пурнăçĕпе пурăнатпăр-и? Чăвашлăх тени пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн кăна аталанса пырать хамăрăн та. Чăваш пурнăçĕ текенни вăл чăнах та хальлĕхе пирĕн ĕмĕтре кăна. Хальхи влаçа вăл кирлĕ мар. Кунта Çеçпĕлĕмĕрĕн юратнă сăмахне илсе кăтартасшăн: «Тĕп Чăваш Пурнăçĕ пуçланса кайĕ, йĕри-тавра чăваш чĕлхи анчах илтĕнĕ. Чăваш хулисенче ирĕклĕ чăвашсем, кăткăсем пек тăрăшса, хăйсене епле аван çавăн пек... канлĕн ĕçлĕç».

Çав вăхăтрах «тĕп Чăваш Пурнăçĕ» хăй килессе кĕтсе алă усса ларас марччĕ, чăваш наци юхăмĕнче кашни çын валли ĕç тупăнать. Эпир пурте, тăванăмăрсем, пĕр халăх ачисем – халăхăмăр умĕнче кашни чăвашăн  сăвапллă парăм пур!

ЧНК III Аслă пухăвне килнĕ делегатсене тата хăнасене пĕтĕм кăмăлтан саламлатăп, Конгресс ĕçне çĕнĕ сывлăш кĕртессе, çĕнĕ хăват парасса шанса тăратăп.

Вăй патăр сире пурне те!

Чăваш наци конгресĕн президенчĕ
Атнер ХУСАНКАЙ.
*«Хыпар», 24.10.1997.*

# 1997, юпа, 24—25: III Аслă пуху



А.П. Хусанкай ЧНК ҫĕнĕ президентне Г.Н. Архипова Конгресс пичетне парать.1997, юпа, 25.

# ЧНК III АСЛӐ ПУХӐВӖН КУН ЙӖРКИ

### Юпа, 24, эрне кун

**8.00–9.45** Чӑваш наци конгресӗн делегачӗсене регистрацилесси.

**10.00.** Аслӑ пуху уҫӑлни. Пил сӑмахӗ, ЧНК Гимнӗ («Алран кайми аки-сухи»).

**10.15** ЧНК президенчӗн ум сӑмахӗ.

**10.20–10.30** Аслӑ пуху ӗҫ органӗсене йӗркелесси (мандат комиссийӗ, секретариат, редакци комиссийӗ, суйлавпа шутлав ушкӑнӗ). Асӑну саманчӗ.

**10.35–10.45** ЧР Президенчӗн Н.В. Федоровӑн салам сӑмахӗ.

**10.45–10.50** ЧР Патшалӑх Канашӗн Председателӗн В.С. Шурчановӑн салам сӑмахӗ.

**10.50–11.00** ЧР Аслӑ сучӗн ертӳҫин П.Ф. Юркинӑн сӑмахӗ.

**11.00–11.25** ЧНК президенчӗн А.П. Хусанкайӑн доклачӗ: «ЧНКн 5 ҫулхи ӗҫӗ-хӗлӗ».

**11.25–11.45** ЧНК вице-президенчӗн В.П. Станьялӑн доклачӗ: «ЧР тулашӗнче пурӑнакан чӑвашсен ыйтӑвӗсем тата Чӑваш наци культура автономийӗн тытӑмне йӗркелесси».

**11.45–12.00** Тӑхтав.

1**2.00–12.10** Мандат комиссийӗн пӗлтерӗвӗ.

**12.10–12.30** ЧНК Президиумӗн членӗн, ЧАП ертӳҫин Н.Е. Лукиановӑн доклачӗ: «ЧНК уставне хушӑмсемпе тӳрлетӳсем кӗртесси ҫинчен: ЧНКн ҫӗнӗ тытӑмӗ».

**12.30–14.00** Докладсене сӳтсе явни, Аслӑ пуху делегачӗсем тухса калаҫни.

**14.00–15.00** Кӑнтӑрлахи апат.

**15.00–18.00** Докладсене сӳтсе явни.

**18.00–20.30** Культура программи.

**21.00–22.30** Каҫхи апат: Пӗрлӗх кӗреки.

### Юпа, 25, шӑмат кун

**9.00–10.30** Аслӑ пуху делегачӗсен сӑмахӗсем, сӗнӗвӗсем.

**10.30–11.00** ЧНК уставне сӗнӗ хушӑмсемпе тӳрлетӳсене йышӑнасси. ЧНКн ҫӗнӗ тытӑмне ҫирӗплетесси.

**11.00–11.45** Аслӑ пуху документсене йышӑнасси.

**11.45–12.15** РФ шайӗнче Чӑваш наци культура автономине туса хурасси (йӗркелӳ пухӑвӗ); тӗрлӗ регион делегачӗсем пӗлтерни. Тӑхтав.

**12.15–13.15** ЧНК Аслӑ пуху Пуҫлӑхне, Канашне, Президентне, вице-президенчӗсене, Ваттисен Канашне, ревизи комиссине суйлани.

**13.15–13.30** Чӑваш наци конгресӗн Канашӗн ӗҫлӗ ларӑвӗ.

**13.30–14.00** ЧНК ҫӗнӗ президенчӗ Аслӑ пуху тата Ваттисен Канашӗ умӗнче тупа туни; Аслӑ пуху хупӑнни; «Алран кайми аки-сухи» (ЧНК гимнӗ); Аслӑ пуху делегачӗсене, хӑнасене ӑсатса яни.

### ЧНК III Аслӑ пухӑвне ертсе пыракан органсем

**Президиум:** Атряскин Н.А., Архипов Г.Н., Асамат С.В., Гладышев В.А., Ерагин Е.Е., Иванов В.А., Исли В.Г., Кураков Л.П., Лукианов Н.Е., Леонтьев А.П., Михайловский М.А., Петров В.П. (Праски Витти), Сарпи Р.В., Семенов Г.С., Станьял В.П., Тимофеев В.А., Тимофеев М.С., Трофимов А.А., Уяр Ф.Е., Федоров Н.В., Федоров С.Н., Хусанкай А.П., Шурчанов В.С., Юркин П.Ф.

**Мандат комиссийӗ:** Абрамов В.А., Гурьев А.В., Енилин Н.А., Иванова И.В., Мустаев О.Н., Петровский А.А.

**Шутлав комиссийӗ:** Атаманов Б.Н., Иванова И.А., Ксенофонтов О.И., Матвеева Е.Н., Мингалев А.Е., Иванов И.А.

**Секретариат:** Алексеев А.А., Солдатова А.Д., Сосаева А.А., Федотов В.К., Цыпленков О.М.

**Редакци комиссийӗ:** Егоров Н.И., Леонтьев А.П., Михайлов Ю.С., Николаева А.Н., Ромашкин В.С., Сементер Ю.С., Семенов Д.Ф., Смолин А.С., Станьял В.П., Тимуков В.Н., Хусанкай А.П.

## ЧӐВАШ НАЦИ КОНГРЕСӖН III АСЛӐ ПУХӐВӖН ЙӖРКИ (РЕГЛАМЕНЧӖ)

### Аслӑ пуху пӗлтерӗшӗ (статусӗ)

**1.1.** Уставпа килӗшӳллӗн Аслӑ пуху ЧНКн тӗп пайӗ (органӗ) шутланать, вӑл ЧНК ӗҫӗ-хӗлӗпе ҫыхӑннӑ кирек хӑш ыйтӑва та татса пама пултарать.

**1.2.** ЧНК Аслӑ пухӑвӗ – Мӑн Канаш сӗннӗ йӗркепе пӗтӗм чӑваш тӗнчи суйланӑ делегатсен, конгрессменсен пӗрлӗхӗ. Пуху ӗҫне делегата суйламан хӑнасем канашлу сассиллӗ ирӗкпе хутшӑнаҫҫӗ.

**1.3.** Аслӑ пухӑва хӑна шучӗпе чӑваш ӗҫне хастар хутшӑннӑ паллӑ ҫынсене – тӗпчевҫӗсене, ҫыруҫӑсене, ӳнерҫӗсене, вӗрентӳҫӗсене, тавра пӗлӳҫӗсене, ӗҫ паттӑрӗсене, ертсе пыракан пайсен ӗҫченӗсене, наци юхӑмӗн хастарӗсене чӗннӗ.

Канашлу сассиллӗ кирек хӑш ҫын пирки пӗр-пӗр делегаци ертӳҫи сивлесе каласан, пуху президиумӗ ӑна ларӑва кӗртесси-кӗртмессине халӑх умӗнче сасӑласа татса парать.

### Пуху ларӑвӗсем

**2.1.** Суйланӑ конгрессменсен ҫурри ларӑва хутшӑнсассӑн вӑл тулли сасӑллӑ шутланать.

**2.2.** Суйлав сасӑлавӗпе ҫыхӑннӑ ларӑва конгрессменсене алӑк умӗнче шута илсе (регистрацилесе) кӗртеҫҫӗ.

**2.3.** Аслӑ пуху ларӑвӗсем ирӗклӗн те уҫҫӑн иртмелле. Хиврелӗх сиксе тухсан пуху хупӑ лару ирттерме пултарать. Хупӑ лару йышӑнӑвне ун хыҫҫӑнхи уҫӑ ларура пӗлтереҫҫӗ. Хупӑ ларӑва конгрессменсем пурте тата пуху ятарласа палӑртнӑ хӑнасем хутшӑнаҫҫӗ.

**2.4.** Аслӑ пухӑвӑн пӗрремӗш ларӑвне Ваттисен Канашӗпе ЧНК Мӑн Канашӗ сӗннӗ хисеплӗ ҫын кӗске сӑмах каласа уҫать. Ларӑва ертсе пыраканӗ Аслӑ пуху конгрессменӗсемпе тата хӑнасемпе, вӗсен йышӗпе паллаштарать, пухӑва сасӑласа уҫать.

Ларусене йӗркелӳ комитечӗн пуҫлӑхӗ, президент, унӑн ҫумӗсем е Пуху кӗреки (президиумӗ) сӗннӗ урӑх ҫын черетленсе ертсе пырать.

**2.5.** Пӗрремӗш ларура ӗҫ тытӑмне, кун йӗркине ҫирӗплетеҫҫӗ. Вӗсене йӗркелӳ комитечӗ сӗнет.

Конгрессменсемпе хӑнасен Пуху йӗркипе ҫыхӑннӑ тата ытти сӗнӗвӗсене ҫыруҫлӑха (секретариата) ҫырса памалла. Тавлашу сиксе тухсан икӗ енчен те икшер ҫынна итленӗ хыҫҫӑн ыйтӑва сасӑлама тӑратмалла.

**2.6.** Аслӑ пуху чӑвашла иртет.

**2.7.** Аслӑ пуху ларӑвӗсене инҫекурӑмпа (телевиденипе) тата ытти хыпарлав хатӗрӗсемпе халӑх умне кӑлармалла.

### Аслӑ пухӑвӑн ӗҫ ушкӑнӗ

**3.1.** Аслӑ пухӑва тытса пыма делегатсенчен Пуху Кӗрекине (президиумне), ҫыруҫлӑхне (секретариатне), тӳрлетлӗх (редакци), мандат, шутлав тата ытти ӗҫ ушкӑнӗсене йӗркелеҫҫӗ, уҫҫӑн сасӑласа ҫирӗплетеҫҫӗ.

**3.2.** Суйланӑ ӗҫ тытӑмӗсем – ҫыруҫлӑх пайӗ (секретариат), мандат ушкӑнӗ тата ыттисем халӗччен ҫирӗплетнӗ йӗркепе ӗҫлеҫҫӗ.

**3.3.** Пуху ертӳҫин тухса калаҫакансен сӑмахӗсем пирки ӑнлантарусем пама юрамасть. Анчах вӑл тӗп ыйтусемпе конгрессменсен ушкӑнӗсене пухса канашласа илме пултарать.

### Тухса каланисем

**4.1.** Тӗп доклад 25 минутлӑх, ҫум докладсем 20 минутлӑх.

Тухса калаҫакансене пӗрремӗш хут – 7 минут, иккӗмӗш хут 3 минут параҫҫӗ.

Пуху тухса калаҫакансен вӑхӑтне улӑштарма пултарать.

**4.2.** Делегатсем тухса калаҫма Пуху ҫыруҫлӑхне (секретариата) хут ҫырса ирӗк илеҫҫӗ. Пуху хӑнисенчен хӑшӗ-пӗри ҫыруҫлӑх сӗннипе тата Пуху ертӳҫи унӑн сӑмахӗ кирлӗ тесе хакласан кӑна сӑмах илме пултарать.

**4.3.** Сӑмах панӑ чухне регионсен черетне шута илмелле.

**4.4.** Пухури ҫын ертӳҫӗ ирӗк памасӑрах тухса калаҫма е кӑшкӑрма тытӑнать пулсан ӑна сасӑламасӑрах ятарлӑ хурал пухуран кӑларса ярать.

**4.5.** Тухса калаҫакан делегат сӳтсе явакан ыйтуран пӑрӑнса сӑмахлать пулсан, пӗрре асӑрхаттарнӑ хыҫҫӑн та тӗп ыйту патне таврӑнмасть пулсан пуху ертӳҫи ӑна калаҫма чарать.

**4.6.** Пухури кашни конгрессмен лару вӗҫӗнче хӑйсене тивнӗ критика пирки кӗске тӳрлетӳ, ӑнлантару пама пултарать.

### Йышӑнусем, сӗнӳсем, тӳрлетӳсем

**5.1.** Тӗрлӗ йышӑнусен проекчӗсене йӗркелӳ комитечӗ, регионсенчи пӗрлӗхсем, делегатсен ертӳҫисем иккӗмӗш лару пуҫланиччен тӑратмалла.

**5.2.** Кирек хӑш конгрессмен хӑйӗн хирӗҫле проектне, сӗнӗвне, тӳрлетӗвне ҫыруҫлӑха ҫырса пама пултарать.

**Сасăлав**

**6.1.** Кашни делегатăн пĕр сасă. Вăл ăна урăх çынна пама е кая юлса сасăлама пултараймасть. Канашлу сассиллĕ хăнасем сасăламаççĕ. Пуху йышăнăвĕ çурринчен ытла сасă пухса вăя кĕрет.

**6.2.** Сасăлав уçă, вăрттăн тата ятран пулма пултарать. Вăрттăн тата ятран сасăлава ларури конгрессменсен 1/3 пайĕ ыйтнипе ирттереççĕ.

**6.3.** Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтупа сасăлас умĕн Пуху ертÿçи шухăша çавăрма пĕр минут вăхăт пама пултарать.

**Саламсем пани**

**7.1.** Аслă пуху йĕркинчи пил, салам сăмахĕсем валли вăхăт кĕске те виçеллĕ. Ăна тăсса яма юрамасть.

**7.2.** Пуху ЧНК Гимнĕпе уçăлса хупăнать.

*«Хыпар», 24.10.1997, 215–216№.*

## ЧĂВАШĂН ТĔНЧИ ÇЫВХАРНĂ ЧУХ ЧĂВАШĂН ЧУНĔ ЙĂВАШ-И?

*Юпа уйăхĕн 24-мĕш кунĕ чăваш пурнăçĕнче пысăк пулăмпа – Чăваш Республики Патшалăх суверенитечĕн декларацине йышăннипе – палăрса тăратчĕ. Паянтан çак кунăн пĕлтерĕшĕ тата пуянланĕ, истори вăл Чăваш наци конгресĕн III Аслă пухăвĕ ĕçлеме пуçланă ятпа та кĕрсе юлĕ. Раççей тăрăх сапаланнă вун-вун облаçпа крайран, çĕр-çĕр ялпа районтан килсе çитнĕ Шупашкара ентешĕмĕрсем. Тус-тăваншăн тунсăхласа çитнĕскерсене Чăваш академи драма театрĕ пурнăç парнеленĕ ашшĕ-амăшĕн килĕ пекех кăмăлтан ырă сунса йышăнчĕ. Тĕлĕнмелле самантсем: пĕр-пĕрне чунтан хисеплесе алă тытни, чăмăртаса ыталани. Çавăнтах – хĕвĕшÿ, пурне те куçпа виçсе илес килекен ăнтăлу... Ăнланмалла ку туйăма. Çĕр-çĕр, пин-пин çухрăм уйăрса тăрсан та тăванлăх, чăвашлăх сÿнмен-ха. Çулăмлă Çеçпĕл Мишши каланă пек тен…* ***Чăвашăн тĕнчи çывхарать çеç-ха? Ун пек чухне «чăвашăн чунĕ йăваш-ши?»*** *Шăпах чăваш чунĕ, юнĕ «вĕресе» тăнипе пуçтарăнчĕ пулĕ халăхăмăр хăйĕн Аслă пухăвне.*

*Несĕлĕмĕрсенчен килекен йăла пур: пысăк ĕçе пуçăннă чух яланах ватăсем пил сăмахĕ калаççĕ. Конгресс ĕçне хутшăнакансем те пăсас мар терĕç ăна. Ваттисен ячĕпе халăхра хисепре шутланакан* ***Н.Е. Наумов*** *мăчавăр пил турĕ:*

**– Тăванăмсем, хăнасем, юлташсем! Пире пĕрле пуçтарса тăракан чăвашлăх, чăвашлăха упраса тăракан çÿлти Турă! Чăваш пурнăçне тытса тăракан йĕрке, пурнăç пурлăхне парса тăракан ырăсем! Эсир пире аталану çулĕ çине кăларакан ĕçсене тума пулăшăр. Ĕçпе те пĕлупе, пуянлăхпа чăваш халăхĕ ÿссе вăйлантăр.**

**Çапла пултăр!..**

Чăваш наци конгресĕн гимнĕ «Алран кайми-аки сухи» юрра Аслă пухăвăн делегачĕсемпе хăнисем ура çине тăрса юрларĕç. ЧНК президенчĕ **А.П. Хусанкай** пуху ячĕпе килнĕ телеграммăсемпе, салам сăмахĕсемпе паллаштарчĕ. Чăвашсем питĕ аван пĕлекен **С.Н. Федоров** офтальмолог, Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ **Г.Н. Волков** академик, Тĕрĕк тĕнчин фончĕн пуçлăхĕ **Туран Язган** профессор (Турци), **А. Лебедь** партийĕн ячĕпе тата ыттисем те Аслă пухăва ăнăçлă ĕçлеме суннине пĕлтерчĕç.

Ертсе пыракан органсене – мандат, шутлав, редакци комиссийĕсем, секретариат – суйланă хыççăн ЧР Президенчĕн администрацийĕн ертÿçи **П.С. Краснов** ЧНК III Аслă пухăвĕ уçăлнă ятпа саламларĕ, кунта пухăнса калаçнин кăтартăвĕсем сулмаклă пулччăр терĕ.

ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕ **В.С. Шурчанов** хăйĕн салам сăмахĕнче Патшалăх Канашĕ юлашки вăхăтра ăс-хакăл пĕрлĕхне çирĕплетес, чĕлхене упраса хăварас, халăха вĕрентес, культурăна аталантарас енĕпе саккунсемпе тĕрлĕ йышăнусем хатĕрлесе кăларнине палăртрĕ, «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен», «Халăха вĕрентес ĕç çинчен» саккунсене улшăнусем кĕртесси çинчен йышăннă саккунсем, учебниксен пĕтĕмĕшле комплекчĕ пирки хатĕрленĕ саккун, «Культура çинчен» саккун чавашлăх ыйтăвĕсене право енчен татса пама пулăшнине палăртрĕ.

ЧР Аслă сучĕн ертÿçи **П.Ф. Юркин** суд органĕсенче ĕçлекенсем чăваш халăхĕ шăпинчен пăрăнса юлманнине, чăвашсен прависене саккунпа килĕшÿллĕн хÿтĕлеме тăрăшнине, çав вăхăтрах ытти халăх çыннисен саккунлă прависене те хĕсĕрлеменнине асăнса хăварчĕ.

«ЧНКн 5 çулхи ĕçĕ-хĕлĕ» ятпа тунă докладра ЧНК президенчĕ **А.П. Хусанкай** тĕпрен илсен çак шухăша палăртрĕ:

– Пĕрлĕх, Аталану, Чăмăртану, пирĕншĕн, ЧНК ĕçне хутшăнакан çынсемшĕн, йыхрав-чĕнÿ кăна мар, кашни кун хура ĕçпе çирĕплетмелли аслă ăнлавсем. Чăваш патшалăхĕ хăйĕн экономикăпа суту-илÿ çыхăнăвĕсене йĕркелесе, финанспа банк йĕркисене çирĕплетсе, культура хутшăнăвĕсене çĕнĕ шая çĕклесе тĕнче умĕнче уçăлса пырать. Анчах та чăваш наци идейи (пĕрлĕх идейи) хальлĕхе патшалăх тытăмĕнче ĕçлекен çынсенчен тухаймарĕ. ...Чăваш патшалăхĕ хăйĕн наци интересĕсене палăртма тата пурнăçа кĕртме пултарайсан тин чăваш халăхĕ çĕнĕрен чăмăртанса çитнине, чăваш нацийĕ пулма пуçланине туйса илĕпĕр. Тăванлăх умĕнче чикĕсем пулмалла мар...

Атнер Петрович ЧНК ĕçне хакланă май ăна виçĕ шайра тишкерчĕ. Пĕрремĕшĕ: республикăри тата унăн тулашĕнчи чăвашлăх ĕçĕ. Иккĕмĕшĕ: чăваш тĕрĕк тĕнчипе çывăхланни. Ку енĕпе те ÿсĕмсем пур. 1993 çулта Тĕрĕк халăхĕсен Ассамблейи Шупашкарта ĕçлерĕ. Унăн ертÿçине чăваш каччине В.А. Тимофеева суйларĕç. Çакăн хыççăн Чăваш Енпе Турци, ытти тĕрĕк халăхĕсем хушшинчи çыхăнусем – куç умĕнчех. Виççĕмĕшĕ: чăваш тĕнчене тухни. Тăван халăхăн тĕнче правин йĕркисене вĕренмелле, хамăрăн ирĕклĕхе тĕнче прави çине таянса хÿтĕлемелле, çĕнсе илмелле. Тĕнчепе чăваш хушшинче чикĕ пулмалла мар. «Ку енĕпе мĕн пуррипе çырлахмасăр малаллах утмалла. Паянхи кун хăйĕн тĕллевĕсене туллин те анлăн палăртма чăваш халăхĕн тĕнчери аталаннă нацисене пĕрлештерсе тăракан чи пысăк пĕлтерĕшлĕ те сумлă организацие – Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине – кĕмелле. Акă мĕнлерех курать чăваш тĕнчине ЧНК президенчĕ А.П. Хусанкай.

ЧНК вице-президенчĕ **В.П. Станьял** «Тулай пĕрлĕхĕсен аталанăвĕ тата наци культура автономийĕсене йĕркелесси» ыйтупа доклад туса пачĕ. Раççей шайĕпе тинтерех вăя кĕрсе пыракан «Наци культура автономийĕсем çинчен» саккун çинче чарăнса тăрса, унпа чăвашсем йышлă пурăнакан регионсенче мĕнлерех уçă курмаллине тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Ку енĕпе республикăра Наци чĕрĕлĕвĕн программине хатĕрленине палăртрĕ. Сăмахран, А.А. Трофимов ертсе пыракан Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ начар мар ĕçлет. Çав программăра чăваш диаспорипе çыхăнусене йĕркелесе ямалли мелсемпе майсене кăтартнă.

Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕ **Л.П. Кураков**: «Çак кунсене аталану уявĕ тесе палăртас килет», – терĕ. Мĕншĕн çапла шутлать-ха Лев Пантелеймонович? Чăваш патшалăх университечĕпе Чăваш наци конгресĕ те пĕр ĕçех – халăха çĕклес, унăн тавра курăмне аталантарас тивĕçе – пурнăçлаççĕ.

Л.П. Кураков юлашки вăхăтра республика тулашне тăтăшах тухса çÿрет. Çавна май вырăнта кадр ыйтăвĕ, вĕрентÿ хатĕрĕсем тĕп проблема пулса тăнине шута илсе çакна пĕлтерчĕ:

– ЧПУ вăйĕпе кăрлач уйăхĕнче учительсен пĕлĕвне ÿстерекен икĕ эрнелĕх курс уçасшăн; республика тулашĕнче çитĕннĕ çамрăксен валли хатĕрлев курсĕ йĕркелесшĕн; Чĕмпĕрти И.Я. Яковлев уçнă чăваш шкулне ЧПУ филиалĕ туса хурасшăн.

Мĕнех калăн – сулмаклă шухăш, утăм. Çаксем пурте пурнăçа кĕмелле пултăрччĕ.

Тăхтав хыççăн ЧНК Аслă пăхăвĕн ĕçне ЧР Президенчĕ **Н.В.Федоров** хутшăнчĕ, сăмах каларĕ. Ун пирки çитес номерте тĕплĕнрех çырса кăтартăпăр.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 25.10.1997, 217№.*

# ТĂВАЛЛА ПУЛСАН ТА МАЛАЛЛАХ…

### Чунпа та, ăспа та çывăхланасчĕ

*Шупашкарта Чăваш патшалăх академи драма театрĕн çуртĕнче юпа уйăхĕн 24–25-мĕшĕсенче Чăваш наци конгресĕн III Аслă пухăвĕ ĕçлерĕ. Кăçал ЧНК йĕркеленнĕренне 5 çул çитрĕ. Çак тапхăрта ЧНК тĕп тĕллевсенчен пĕрне – тĕнче тăрăх сапаланнă чăвашсене пĕр чăмăра пуçтарассине – пурнăçларĕ теме пулать.*

– Манăн хаклă чăвашсем! Хисеплĕ тăванăмăрсем! Юлташсем! Хăнасем! Тăван çĕр çинче пухăннă ятпа саламлатăп. Пĕр-пĕринпе çакăн пек тĕл пуласси, пуçтарăнасси час-час пулаймасть. Ахальтен мар пулĕ мана çак кунсене уяв кунĕсем тесе палăртма сĕнеççĕ.

Тухса калаçакансене итлесе ларнă май калаçу çивĕчленсе пыни сисĕнет. Пурнăç çăмăл мар. Нихăçан та çамăл пулман вăл. Пирĕн пĕр-пĕрне хăратма, хурлама кирлĕ мар тесе шутлатăп. Калаçатпăр, шутлатпăр, мĕн те пулсан тупатпăрах. Çавăнпа пĕр-пĕрне манмалла мар, пулăшмалла, – палăртрĕ ЧР Президенчĕ **Н.В. Федоров** Аслă пуху ĕçне хутшăннă делегатсемпе хăнасене саламласа. – Чăваш ĕçлеме пултарать, питĕ вăйлă ĕçлет. Лаша, трактор вырăнне те тăнă. Анчах чăваш хушшинче калаçма, ĕçсене йĕркелеме пултаракансем çитмеççĕ. Хамăр хушăрах шырамалла, хатĕрлемелле вĕсене. Пухура çак йышу çине тимлĕ пăхасса шанатăп...

Республика Президенчĕ 2 миллиона яхăн чăваш халăхĕн (çурри ытла республика тулашĕнче пурăнать) çитĕнĕвĕсемпе пĕрлех нуши-асапне пĕлет. Юпан 23-мĕшĕнчех вăл Республика çуртĕнче çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пырса çитнĕ делегацисен ертӳçисемпе тĕл пулнă, вĕсен пурнăçĕпе интересленнĕ, ыйтăвĕсене хуравланă. Ашмарин словарĕн 6 томĕ пичетленсе тухрĕ те малаллахи ĕç-пуç чăхăмланă пек пулчĕ. Укçа-тенкĕ çителĕклех мар пулин те ку ĕçе çитес уйăхсенчех çĕнĕрен пурнăçлама тытăнасшăн-мĕн. Тĕнчери чăвашсем валли уйрăм пичет кăларăмĕ кирлех. Ку тĕлĕшпе «Хыпар» хаçата вăйлатма вăй çителĕклĕ. «Хыпар» кăна мар, ытларах та тума, хамăр çине яваплăх илме пултаратпăр. Тутарстанри ентешĕмĕрсем правительство енчен чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕсем хатĕрлес ĕçре укçа-тенкĕ пулăшăвĕ çуккине палăртрĕç. Тутарстанра 115–120 пин чăваш, пурте налук тӳлеççĕ, эппин, мĕншĕн уйăрмалла чăвашсене? Çакăн пирки М. Шаймиев Президентпа калаçма пулчĕ Н. Федоров. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ И.Я.Яковлев çуралнăранпа 150 çул çитнĕ тĕле тивĕçлĕ вырăн йышăнĕ тесе çирĕплетни те пушă сăмах кăна ан пултăрччĕ ĕнтĕ. ЧР тулашĕнче пурăнакан регионсенче Чăваш Республикин элчĕлĕхĕсене йĕркелес ыйтăва татса пама шантарчĕ Николай Васильевич...

Вулаканăмăрсем, тен, ас тăваççĕ те пулĕ, ЧНКн 1992 çулта иртнĕ I Аслă пухăвĕнче ЧР Аслă Совечĕн Председательне Э.Кубарева «чăвашла йĕркеллĕ калаçма пĕлмест» тесе самай сăмах тивнĕччĕ. Н. Федоров тăван чĕлхепе тепĕр вĕрентекенрен те тасарах калаçать.

Çакă кăна та мар. Наци политикине, культурине, чĕлхине, йăли-йĕркине пĕтерме памалла мар, вăй илтермелле, кашни чăвашăн çакна чунпа, ăспа ăнланса илмелле, – çине-çинех палăртрĕ Николай Васильевич. Республикăн чи аслă хуçи те чăвашлăх ыратăвне ăнланса илчĕ пулсан – ыттисен алă сулма кирлех-ши ун çине?

### Сахалрах нăйкăшатпăр, çапах та...

«Мĕн тĕллевпе пуçтараççĕ Аслă пухусене?» – çак ыйту мана кăна мар, пирĕн вулаканăмăрсене те шухăшла ярать ĕнтĕ. Чăн та, I Аслă пуху пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн, чăваш тĕнчишĕн тĕлĕнмелле пысăк уяв пулчĕ. Тĕл пулусем, паллашусем, пĕр-пĕрин ĕçĕ-хĕлĕ, савăнăçĕ, асапĕ-нуши. Хальччен пĕр-пĕрин çинчен сăмах тăрах кăна пĕлнĕ те, калаçмалли чăннипех сахал мар ĕнтĕ. II Аслă пуху. Каллех çак ӳкерчĕк. Пĕрин хыççăн тепри тухать микрофон умнĕ: шкул уçасшăн, вĕрентекенсем, кĕнекесем çитмеççĕ; фольклор ушкăнĕсем йĕркелетпĕр, чăваш тумĕ, чăваш халăх инструменчĕсем кирлĕ; чăваш музейĕ уçатпăр, экспонатсем çителĕксĕр – чарăнми макăрашу-нăйкăшу. Ăнланмалла, паллах, пуррине пĕтернĕ, упрайман, халĕ çĕнĕрен пуçламалла, пуçламăш утăмсем яланах йывăр. Ăнланнă, май килнĕ тарăн пулăшнă. Музей çурчĕн пурине Шăмăршă тăрăхĕнчен тулайри ентешсем патне турттарса кайса музей уçса пани, кĕпе-тумтир тӳлевсĕр пани те пулнă. Пушкăрт е тутар чăвашĕсенех илер. Пушкăртстанпа, Тутарстанпа танлаштама çук Чăваш Республикине. Пушкăртстан, тĕслĕхрен, ЧРпа танлаштарсан территори тĕлĕшĕнчен 7–8 хут пысăкрах. Çут çанталăк ресурсĕсем тĕлĕшпе вун-вун хут пуянрах. (Сăмах май, çут çанталăк пуянлăхĕсем енĕпе Раççейри 89 регион хушшинче ЧР. . . 89-мĕш вырăнта-мĕн). Пушкăрт, Тутар е Самар çĕрĕнче пурăнаççĕ, вĕсен экономикишĕн тар кăларса ĕçлеççĕ, вĕсен бюджетне налук тӳлеççĕ, Чăваш Республикине нимĕнле усă кӳмеççĕ тесен те пысăк йăнăш мар. Апла пулин те пĕчĕк, хĕсĕк Чăваш çĕр-шывĕн вĕсене пулăшса пымалла.

– Тĕл пулмассерен Тутарстан Президенчĕ хăйсене ТР тулашĕнче пурăнакан ентешĕсем халран янине пĕлтерет: «Ментимир Шарипович, калăр, мĕн туса памалла сире, укçа кирлĕ мар-и, предприяти уçса памалла мар-и?» – тата ытти те. Манăн вара урăхларах: «Николай Васильевич, кăштах укçа парса пулăшаймастăр-и, хваттер параймастăр-и, ĕçе вырнаçтараймастăр-и?» – тата ытти те, – тет ЧР Президенчĕ. Мĕнех, унăн ыратăвне те ăнланма пулать ĕнтĕ.

III Аслă пухура та пуç ватмалли, пăшăрханмалли тупăнсах тăчĕ. Кĕçех И.Я. Яковлев çуралнăранпа 150 çул çитет. Унăн вил тăпри Мускавра. Мускав чăвашĕсем тăтăшах пулаççĕ унта, тасатаççĕ, тирпейлеççĕ. Анчах вил тăпри пысăк çулпа юнашар выртать, машинăсем иртсе çӳренĕ май çĕр кисренет. «Çук, лăпкă çывăраймĕ унта Иван Яковлевич, Чĕмпĕре куçармалла мар-ши вил тăприне? [Алексей Петрович] Майраслов скульптор Яковлев палăкне укçа çитменрен халĕччен те туса пĕтерейместь, никама нимĕн кирлĕ мар», – пăшăрханаççĕ Мускавсем. Сăмах май, Мускав чăвашĕсем, хăйсем хушшинче пăтранкаласа илеççĕ пулин те, начар мар ĕçлеççĕ темелле.

Самар облаçĕнче 118 пине яхăн чăваш пурăнать. Культура пĕрлĕхĕсем, пултарулăх ушкăнĕсем ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах кăмăла пăсаканни те çук мар. «Самар ен» хаçат редакцийĕн облаç центрĕнчен район центрне куçса кайма тивнĕ. Халĕ, акă, укçа-тенкĕ паманран нушаланаççĕ. «Хаçата пĕтерме памастпăрах», – теççĕ уйрăм хастарсем. «Удмуртире чăвашсем 3 пин çурă кăна. 5 чăваш ялĕччĕ, халĕ 2 кăна юлчĕ. Республика правительстви шкул, ача сачĕ туса панă. Вырăнти телевиденипе вырăсла, тутарла, марилле кăларăмсем курма пулать. Çитес çул чăвашла кăларăмсем пирки сăмах хускатасшăн», – пĕлтерчĕ **А. Иголкин** делегат. «Тăвасшăн, уçасшăн, пуçласшăн» тесе сăмах калакансем чылай пулчĕç. «Шанчăка çухатманнисем телейлĕ» тенине те манар мар. Тен, çав шухăш-ĕмĕт пурнăçа кĕрессе кĕтсе 1–2 çул кăна та иртмĕ.

«Тюмень тăрăхĕнче 32 пин чăваш. Культура пĕрлĕхне йĕркеленĕренпе чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕсенче 6 çул çитет. Эпир çине тăнипе тăваттăмĕш çул Тюменьре Чăваш Республикин представительстви ĕçлет. Кашни çул чăваш акатуйĕсем ирттеретпĕр. Ялсенче чăвашла вĕрентеççĕ. 5 çамрăк Шупашкарти аслă вĕренӳ заведенийĕнче пĕлӳ илет. ЧРтан пулăшу пĕр пус та ыйтман. Хамăр пулăшу сĕнетпĕр. «Çĕпĕр-Волга» пĕрлехи предприяти йĕркелерĕмĕр. ЧНК енчен нимĕнле пулăшу та пулман. Видеокассетăсем сутма ярса пăраççĕ, «укçине ярса парăр» теççĕ кăна. Вăт çапларах «пулăшу». Эпир Аслă пухăва лекци итлеме килмен. Сахалрах калаçмалла, ытларах ĕçлемелле. ЧНК ĕçĕ-хĕлне аванспа кăна «çителĕклĕ» хак пама пултаратăп», – палăртрĕ Тюмень чăвашĕсен ассоциацийĕн ертӳçи **А. Архипов**.

«Пушкăртстанра чăвашсемшĕн çул уçăлса пырать. Ĕпхӳ, Стерлитамак, Мелеуз хулисенче вырсарни шкулĕсем ĕçлеççĕ. ПР Писательсен союзĕ çумĕнче Чăваш секцийĕ уçма ирĕк панă. Пелепей хулинче чăваш гимназийĕ ĕçлеме тытăннă. «Урал сасси» республика хаçачĕ хăйĕн вулаканĕсене тупрĕ, унта пултаруллă çамрăк журналистсем тăрăшаççĕ», – паллаштарчĕ 120 пинлĕ пушкăрт чăвашĕн ĕçĕ-хĕлепе вырăнти культура пĕрлĕхĕн яваплă секретарĕ **И. Тарасов**. Пушкăртстанри Давлекан районĕнчи Чунчă-Николаевкăри шкул

директорĕ **И. Ильина** хăйсен шкулĕнче 5-мĕш класа çитиччен пур предмета та чăвашла вĕрентнине пĕлтерчĕ. Хальлĕхе кĕнекесем çителĕксĕр. Шел, Шупашкарта та тупăнман кирлĕ кĕнекесем.

Воркута тăрăхĕнче пурăнакан чăвашсен ывăл-хĕрне «чукчă-и?» тесе йĕкĕлтени те пулнă-мĕн. Пултаруллă хăш-пĕр чăваш çыннисем тăрăшнипе чăваш класĕсем уçнă. Халĕ пĕр шкулта кăна 100 яхăн ача чăвашла вĕренет. Илме ыйтса ытти шкулсенчен те пыраççĕ. Чăваш музейĕ тума пуçланă. Оренбург облаçĕнчен Аслă пуху делегачĕ пулса килнĕ предпринимателе шурă Шупашкар халăхĕ питĕ кăмăла кайнă. «Пирĕн «Алина» фирма «Малая Родина» хаçат кăларса тăрать. Малашне унта чăвашла материалсем ларттарасшăн», — пĕлтерчĕ вăл.

Тулай чăвашĕн ĕçĕ-хĕлĕ куç умĕнчех. Йывăрпа пулин те малаллах талпăнаççĕ. Чăн та, чыс-хисепшĕн çунса пуш сăмах çапакансем, наци тумĕпе витĕнсе хăйсен вăййине вылякансем, хальччен те чăвашла калаçма вĕренеймен (тен, вĕренесшĕн те мар?) ертÿçĕсем, ура хуракансем те çук мар. Вырсарни шкулĕсенчи вĕрентÿ пахалăхĕ те тивĕçтермест тен. Темле пулсан та — лав вырăнтан хускалнă.

### Çăл куç та юшкăнпа пăтранĕ

«ЧНК штаб-хваттерĕ, унăн ертÿçисем çителĕклĕ, кирлĕ пек ĕçлесе çитерейменни ЧНК ĕçлеменнине пĕлтермест. ЧР тулашĕнче пурăнакан чăвашсем Шупашкар хушни-сĕннине кĕтмеççĕ паян, хăйсемех çулйĕр шыраççĕ», — çак шухăша пĕрре кăна мар илтме тÿр килчĕ пуху вăхăтĕнче. Чăннипех те çапла. «Тулай е тулаш чăвашĕ» тетпĕр те — чылай чух «тĕп» чăвашсенчен пултаруллăрах, хастартарах, кăмăллăрах вĕсем. Эпир вара, «тĕп» чăвашсем, ниепле те вăй илейместпĕр. «Ĕçе йĕркелесе яраймарăмăр. Пĕр калпак айне тăраймарăмăр. Халĕ кашни ушкăн хăй политика юхăмĕ пулса кайрĕ. Халăха пайлама тытăнтамăр. Илемлĕ литература яланах усламлă ĕç пулнă, халĕ кĕнеке кăларма çук. Профессионал-çыравçăсем çухалчĕç, пурте çыравçă паян», «Мана кăна кирлĕ-ши «Пике» журнал, чăваш хĕрарăмĕсен пĕртен пĕр журналне укçа памасар тарăхтараççĕ», «ЧР çыравçисен, художниксен союзĕсем икке пайланчĕç. Кама чыс кÿрет çакă? Пĕр-пĕрине пĕр чĕлхе тупаймастпăр, мĕнле тĕслĕх кăтартатпăр ентешсене?», «ЧОКЦ, ЧНК пĕр ĕçех тăваççĕ, пĕр юхăмпа ямалла мар-и вĕсене?» — чăннипех те тĕрлĕ сĕнÿ-канаш (чун ыратăвĕ, кăшкăру тесен тĕрĕсрех пулĕ) илтме тиврĕ. Чăн та, мухтанмалли сахалрах.

«Чăваш ятпах кĕресшĕн эпир çĕн ĕмĕр аслă хапхинчен». Çак ятпа тухрĕ «Хыпарăн» черетлĕ кĕнеки. ЧР Президенчĕ «кĕресшĕн» вырăнне «кĕретпĕр» тесе çырмалла пулнă тесе тĕрĕсех асăрхаттарчĕ. Капла ĕçлесен, пурăнсан «кĕресшĕн» шайĕнче юлас хăрушлăх пур. Тĕнчене тухайман халăхсен организацийĕн членĕ тесе мухтанатпăр-ха та, савăнмаллиех çук пек туйăнать кунта...

«Калăр-ха, Чăваш Республики 21-мĕш ĕмĕре кĕреет-и, унччен пурăнаять-и? Чĕлхене упраса хăварас тесен мĕн тумалла? Чăваш Республикинче миçе патшалăх чĕлхи пулмалла?» — ыйту çине ыйту пачĕç çула май Аслă пухăва саламлама кĕрсе тухнă РФ премьер-министрĕ пулнă **Н.И. Рыжкова** залра ларакансем. Рыжков çеç хуравлама пултарать имĕш асăннă ыйтусене. Хамăртан хамăр култаратпăр...

### Чăнлăх тавлашура çуралать?

Мандат комиссийĕ пĕлтернĕ тăрăх — ЧНК III Аслă пухăвне кашни 8 пин чăваш пуçне пĕр делегат суйламалла пулнă. Пухăва 479 делегат суйланă. 200 яхăн делегат — республика тулашĕнчен. Чи пысăк йыш —Тутарстанран: 65 çын. Пушкăртстан — 46, Самар — 30, Чĕмпĕр — 35, Тюмень — 8, Мускав — 8, Питĕр — 3, Удмурти — 2. Молдова, Белоруссии, Мари Эл, Томск, Иркутск, Кемĕр, Саратов чăвашĕсем те килсе çитнĕ.

III Аслă пуху делегачĕсене пăхса тухма тăратнă резолюцисемпе йышăнусен проекчĕсем пирки тĕрлĕ шухăш пулчĕ: чеченсенчен мĕншĕн каçару ыйтмалла, чăваш ывăлĕсем вăрçă вутне хăйсен ирĕкĕпе кĕмен; намăс хапхи кирлĕ мар, кирлех тĕк чăн малтан унта ЧНКна хăйсене кĕртмелле; чăваш халăхне чĕнсе каланине калав пекех çырнă т.ыт.те.

Наци политикипе ĕçлекен патшалăх комитечĕ, ЧР çĕнĕ Конституцийĕ кирлĕ, проект пур; кириллица вырăнне латиница çине куçмалла; хĕрарăм сывлăхне упрамалла, 100-тен 13-шĕ кăна лайăх çуратма пултарать, ачасем чирлĕ çуралаççĕ; çĕре, шыва, çут çанталăка сыхламалла — асăннă сĕнÿ-шухăша та шута илме хушрĕç делегатсем.

**III Аслă пуху делегачĕсем ЧНК президенчĕ пулма ЧР Патшалăх Канашĕн Культура, вĕрентÿ, информаци политики тата çыхăну енĕпе ĕçлекен комитет ертÿçине Г.Н. Архипова суйларĕç. ЧНК Аслă Пухăвĕн ертÿçи – В.П. Никитин-Станьял. А.П. Хусанкай – ЧНК хисеплĕ президенчĕ.**

### Çĕнĕлле ĕçлесси пулĕ-ши?

ЧНК президенчĕ пулма çĕнĕ çынна суйлани шанчăк парать. Г.Н. Архипов III Аслă пухăва ирттерес тĕлĕшпе чылай ĕç тунине, унсăр пуçне Чĕлхесем çинчен калакан саккунпа çыхăннă постановление суд тунă вăхăтра судра чĕлхе, чăвашлăх чысне хÿтĕленине манмалла мар. Анчах ЧНКн пĕтĕмĕшле тытăмĕ киввиех. Ĕçлеме парĕç-ши вĕсем çĕнĕ вăя?

Лидия ФИЛИППОВА
*«Хыпар», 28.10.1997, 218№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН III АСЛĂ ПУХĂВĔН ЙЫШĂНĂВĔСЕМ

### Чăваш Республикин «Гражданлăх çинчен» саккунĕн принципĕсем çинчен

Гражданлăх институчĕ — чăн-чăн суверенлă патшалăхăн тĕп институчĕсенчен пĕри. Гражданлăх уйрăм çынпа патшалăх хушшинче право тăлĕшĕнчен çирĕп çыхăну пуррине пĕлтерет, çакă вăл пĕр-пĕрин умĕнчи тивĕçсенче, пĕр-пĕрин прависенче тата пĕр-пĕрин умĕнче яваплă пулса тăнинче палăрать.

Чăваш наци конгресĕ Республикăн патшалăх суверенитетне çирĕплетес тĕллевпе çывăх вăхăтра Чăваш Республикин «Гражданлăх çинчен» сакунне йышăнмалла тесе шутлать. Çав саккунра принциплă çак йĕрке-тăрăва палăртса хăварма тивĕçлĕ:

Чăваш Республикинче кашни çыннăн гражданлăх пулмалла тата никам та туртса илме пултарайман çак правăпа туллин усă курмалли майсем туса хумалла. Чăваш Республикин гражданлăхĕ пуриншĕн те пĕр тан правăллă пулмалла, çавна май гражданлăха мĕнле сăлтавсемпе йышăннине шута илмелле мар.

Çак саккун Чăваш Республикин гражданлăхне йышăнмалли сăлтавсене тата йĕркене уçăмлă палăртма тивĕçлĕ. Тĕпрен илсен ăна çак йĕркепе йышăнма пултараççĕ:

**а)** çуралнипе; **ă)** ăна йышăннипе; **б)** гражданлăх панипе.

Çуралнипе гражданлăх йышăннă чухне ачисемпе ашшĕ-амăшĕн гражданлăхĕсем килĕшсе тăма тивĕçлине шута илмелле.

«Гражданлăх çинчен» саккуна йышăннă самант тĕлне республика территорийĕнче яланах çирĕплетнĕ йĕркене пăхăнса пурăнакан çынсене пурне те Чăваш Республикин гражданĕсем тесе йышăнма тивĕçлĕ. Çавна май вĕсем мĕнле социаллă сийрен тухнине, хăш наци представителĕ, арçын е хĕрарăм пулнине, мĕнле тĕне ĕненнине, мĕнлерех пурлăх тытса тăнине шута илмеççĕ.

Малашне, «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккунăн 3 статйи вăя кĕнĕ хыççăн, гражданлăх панă чухне (Раççей Федерацийĕн гражданĕсене, урăх çĕр-шывсен гражданĕсене, гражданлăхсăр çынсене гражданлăх панă чухне) çак йĕркесене пăхăннине шута илсе ĕçлеме тивĕçлĕ:

**а)** республика территорийĕнче ялан пурăнакан вăхăт 5 çултан кая мар пулмалла;

**ă)** Чăваш Республикин патшалăх чĕлхисене йăлара хутшăнса калаçнин шайĕнче пĕлмелле;
**б)** Чăваш Республикин Конституцийĕн тĕп положенийĕсене пĕлмелле;

**в)** Чăваш Республикин гражданинĕ пулни пирки тупа тумалла.

Чăваш Республикин гражданлăхне йышăнасси уйрăм çыннăн сак-

кунра палăртнă условисене пăхăнса çырнă ыйтăвне пăхса тухнă май пулса иртме тивĕçлĕ.

Историри конкретлă чăнлăхсене шута илсе — Чăваш наци конгресĕ Чăваш Республикин гражданлăх статусне хальхи вăхăтра республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсем те йышăнма пултарассă тесе шутлать. Çапла тума уйрăм çын хăй ыйтса çырни тата Чăваш Республики тивĕçлĕ патшалăхпа договор туни кирлĕ.

Республика умĕнче уйрăмах тава тивĕçлĕ ĕçсем тунă çынсем, наука, культура, ÿнер тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем, политикăн палли çыннисем, чаплă спортсменсем тата ытти сем енĕпе Чăваш Республикин гражданлăхне памалли уйрăм тĕслĕхсемпе усă курма пултарассă.

Чăваш Республикин гражданинне пĕр вăхăтра икĕ гражданлăх йышăнмашкăн право пама тивĕçлĕ. Çапла тума тивĕçлĕ патшалăхпа çакăн пирки килĕшсе татăлни кирлĕ.

Саккунра патшалăх хăйĕн гражданĕсене, республика тулашĕнче пурăнакан гражданĕсене хÿтĕлемелли тивĕçсене, çавăн пекех хăйĕн гражданĕсене саккунсемпе килĕшÿллĕн ытти патшалăха тытса пама чаракан йĕркесене палăртма тивĕçлĕ.

Уйрăм çын гражданлăхран хăй ирĕкĕпе уйрăлма килĕшнĕ е Чăваш Республикин гражданлăхне илесси çинчен калакан йышăнăва пăрахăçланă чухне çеç Чăваш Республикин гражданинĕ пулма пăрахать.

Республика Президенчĕ Чăваш Республикин гражданлăхĕн ыйтăвĕсене татса пама тивĕçлĕ чи аслă патшалăх органĕ пулса тăрать.

### Çĕнĕ паспорт тăвасси çинчен

СССРа аркатнă чухне суя демократсем çĕр-шывра пĕр-пĕтĕм совет халăх тумалли политикăна хăрушлăх тесе хакларĕç, нацисемшĕн тăрăшнă пек кăтартса халăха улталарĕç.

Хăйсен сĕмсĕр тĕллевне пурнăçлама вĕсем тата хăрушăрах вăрттăн çул шыраса тупрĕç: нацилĕхе палăртман паспорт парса мĕн пур халăхсене вырăс тума, çĕрсĕр-шывсăр хăварма шутласçĕ.

Пĕр халăх кăна пурăнакан çĕр-шывра, пĕр чĕлхеллĕ патшалăхра наци ятне асăнмасан та юрамалла. Анчах нумай халăхлă Раççей Федерацийĕнче паспортра наци ятне çырманни вырăс мар халăхсене шута хуманни, ассимиляципе русификаци программине пурнăçлани, Раççейпе ытти халăхсен хушшинче хирĕçÿ çуратни пулать.

Чăваш наци конгресĕ чăвашсене валли чăвашла, вырăсла, акăлчанла çырнă çĕнĕ паспортсем тума, нацие палăртман шовинистла паспорт тăвассине Чăваш Республикинче чарса лартма ыйтать.

Чăвашла çĕнĕ паспорт саккунлă пултăр тесе чи малтан Чăваш Республикин «Гражданлăх çинчен» саккунне йышăнмалла. Çак саккуна хатĕрлеме тата йышăнма ЧР Патшалăх Канашне сĕнес. Унччен ЧНК чăн чăваш çыннисене нацилĕхе палăртман паспортсене алла илмелле мар тесе калать, кивĕ паспортсемпех çырлахма йыхравлать.

Ашшĕ-амăшне маннă, тăванĕсене пăрахнă, халăхран сивĕннĕ, элтешлĕхсĕр (гражданлăхсăр) ачасем ÿстерсе чăваш ятне çĕртер мар!

Эпир чăваш ятпах кĕресшĕн çĕн ĕмĕре!

### Чечен-Ичкери Республикин халăхĕпе чăваш халăхĕн хутшăнăвĕсем çинчен

Раççей Федерацийĕ чечен халăхĕн наци-ирĕклĕх юхăмне катас, Джохар Дудаев ертсе пынипе çĕнсе илнĕ никама пăхăнманлăха юнпа путарас тĕллевпе пуçарнă вăрçа (1994 çулхи чÿк — 1996 çулхи çурла уйăхĕсем) чăваш халăхĕ мĕн пуçламăшĕнченех сивленĕ. Пархатарлă çак ĕçе ЧНК, ЧАП, ЧР Президенчĕ Николай Федоров тата ЧР Патшалăх Канашĕ хастар хутшăннине палăртмалла. Анчах Раççей Федерацийĕн импери туртăмĕллĕ политикĕсемпе генералитечĕ чăваш халăхĕпе ытти халăхсем каварлă, тискер вăрçа чарса лартма чĕннине нимĕн вырăнне те хумарĕç. «Конституци йĕрки туса хурас» текен суя тĕллевпе чечен халăхне хирĕçле геноцида Чăваш Республикин халăхсен, чи малтанах чăваш халăхĕн Раççей çарĕнчи тата шалти çарсенчи салтакĕсемпе офицерĕсене те хутшăнтарнă. Чăваш Республикин 1 пин ытла гражданинне вăрçă вутне кăртнĕ, çак шутран 51-шĕ вилнĕ, 14-шĕ хыпарсăр çухалнă.

Çакна Раççей патшалăх влаçĕ чечен халăхĕпе чăваш халăхне пĕр-пĕрне курайманлăх çулĕ çине тăратма хăтланни тесе хакламалла.

Çÿлте каланине тĕпе хурса Чăваш наци конгресĕн III Аслă пухăвĕ:

чăваш халăхĕн ывăлĕсене вĕсенчен ыйтмасăр, вăйпа геноцида явăçтарнăшăн чечен халăхĕнчен каçару ыйтать;

вăрçăра Раççейĕн колони çар корпусне çĕнтернĕ чечен халăхне никама пăхăнманлăха де-юре çирĕплетес ĕçре ăнăçу сунать;

Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне Чечен-Ичкери Республикин Правительствипе килĕштерсе пурăнассипе туслăх çинчен Килĕшÿ тума чĕнсе калать.

**Тулай чăвашĕсем валли ятарлă хаçат уçасси тата «Интер-Хыпар» информаци агентстви туса хурасси çинчен**

Раççей Федерацийĕнчи йышĕпе виççĕмĕш халăхăн — чăваш халăхĕн — çурри ытла Чăваш Республикин тулашĕнче пурăнать. Пушкăртстанра, Самар облаçĕнче, Тутарстанра, Чĕмпĕр облаçĕнче эрнесерен чăвашла хаçатсем тухса тăраççĕ, Пенза, Кемĕр облаçĕсенче, ытти регионсенче чăвашла массăллă информаци хатĕрĕсем хальлĕхе çук. «Хыпар» хаçат редакцийĕ хăйĕн вăйĕпе чăвашла пĕлмен чăвашсемпе тĕрлĕ наци çыннисем валли «Хыпар» на русском — Дайджест» хаçат кăларать. Анчах хальлĕхе Раççей Федерацийĕнче тата ытти патшалăхсенче пурăнакан чăвашсем валли ятарлă хаçат е массăллă информацин урăх хатĕрĕ çук.

Чăваш наци конгресĕн III Аслă пухăвĕ:

«Хыпар» хаçат редакцийĕн техника никĕсĕ (компьютер центрĕ, вăл тĕнчери «Интернет» глобальлĕ компьютер тытăмне кĕни т.ыт.те) çирĕп те шанчăклă пулнине палăртать.

«Хыпар» хаçат редакцине (тĕп редакторĕ — Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн членĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ А.П. Леонтьев) тĕнчери чăвашсем валли ятарлă хаçат кăларса тăма, «Интер-Хыпар» информаци агентстви йĕркелеме сĕнет, çак ыйтăва татса пама ЧР Министрсен Кабинетĕнчен пулăшу ыйтать.

### Халăх йăли-йĕркине упрасси çинчен

Чăваш ялĕсем авалтан упранса пыракан йĕркепе ĕç вăхăтне, кану черетне, кил-йыш тата çулталăк уявĕсене тытса пыраççĕ. Ваттисене хисеплени, несĕлсене асăнни, яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа йĕркелĕхе вĕрентни, акатуйсемпе туйсене, ĕçкĕсемпе нимесене çирĕпленнĕ майсемпе йĕркелени халăх ăс-тăнне, кăмăл-туйăмне упраса тăрать.

Чăваш халăхĕн тĕнĕ-ĕненĕвне сăнакан яланхи симпозиум тата чăваш йăли-йĕркине пурнăçлакан мăчавăрсем сĕннисене шута илсе, Чăваш наци конгресĕн III Аслă пухăвĕ çапла йышăнать:

**1.** Халăхăн çирĕпленнĕ йăла-йĕрки çынсен хутшăнăвне, çут çанталăк управлăхне, кăмăл-сипете тĕрĕс аталанма пулăшнине асра тытас, унăн усăллă енĕсене упрамала тесе шутлас.

**2.** Чăваш халăхĕн авалтан килекен йăли-йĕркипе чăн чăваш тĕнĕн вĕрентĕвне православи, ислам тĕнĕсемпе тата ытти тĕнсемпе танах шутлас, ăна хĕстернине, хирĕçленине тиркес.

**3.** Шупашкарти чăваш этнокультурин Керемне, Чĕмпĕр, Самар, Пушкăртстанри, Тутарстанри тата ытти вырăнсенчи чăваш тĕнĕллĕ ялсенче Керем çурчĕсем лартма шутланине чăваш халăхĕн тĕн танлăхне палăртакан пулăм тесе хаклас.

### Паллă çынсене чысласси çинчен

Наци паттăрĕсене, паллă çынсене халăхпа чысласси çирĕп йăлана

кӗрсе пырать. К.В. Ивановӑн 100 ҫулне, И.Я. Яковлевӑн 150 ҫулне, Н.Я. Бичуринӑн 220 ҫулне ҫӗр-шыв тата ЮНЕСКО шайӗпе irttерни лайӑх йӑла пуҫламӑшӗ пулчӗ.

Малашне район, хула, республика тата наци шайӗпе палӑрнӑ ҫынсен 100, 125, 150, 175, 200 ҫулӗсене пӑрӑнми йӗркепе тата малтанах ҫирӗплетнӗ календарьпе ирттерессине, ку юбилейсем тӗлне вӗсен пурнӑҫӗпе пултарулӑхне тӗплӗ пӑхса тухассине, ятарласа «Еткер» ярӑмпа пысӑк е пӗчӗк кӗнекесем кӑларассине кирлӗ ӗҫ тесе шутлас.

Нацин паллӑ ҫыннисем ҫинчен калакан кӗнекесене патшалӑх тытӑмӗсем хатӗрлеҫҫӗ. Хула, район шайӗпе чысламалли ҫынсем ҫинчен калакан материалсене вырӑнти вӑйпа кӑларма тӑрӑшмалла.

«Еткер» ярӑм ӑс-пурлӑх, ӑслӑлӑх, вӗрентӳ, ӳнер, ҫарпа хуҫалӑх, патшалӑхпа политика тата ытти енӗпе палӑрнӑ пур ҫыншӑн та уҫӑ пулмалла.

Юбилей тӗлне тӗпчевлӗ ӗҫсем кӑларассине Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗ, аслӑ вӗренӳ заведенийӗсем, Чӑваш патшалӑх тӗп архивӗ, Чӑваш кӗнеке палати, Чӑваш наци вулавӑшӗ, пултарулӑх пӗрлӗхӗсем, территори администрацийӗсем тата ытти учрежденисем хӑйсен пӗрлехи тивӗҫӗ тесе шутламалла.

Конгресс ҫак ӗҫе йӗркелесе, сӑнаса тӑма Ваттисен Канашне хушса хӑварать.

1997 ҫ. юпа уйӑхӗн 25-мӗшӗсенче йышӑннӑ.

# ЧӐВАШ НАЦИ КОНГРЕСӖН УСТАВӖ

**1. Пӗтӗмӗшле положенисем**

**1.1.** Чӑваш наци конгресӗ (малалла ЧНК) чӑваш нацийӗн пултарулӑх, ӑс-хакӑл тата культура вӑй-хӑватне пӗрлештерекен общество организацийӗ, вӑл наци чӗрӗлӗвӗшӗн, аталанӑвӗшӗн тата пӗтӗҫӳлӗхӗшӗн тӑрӑшса ӗҫлет.

**1.2.** ЧНК пӗтӗм чӑваш халӑхӗн социаллӑ пурнӑҫ тата наци культура интересӗсене палӑртса, чӑвашсем хӑш вырӑнта пурӑннине пӑхмасӑр, пӗтӗм тӗнчери халӑхсем хушшинчи правӑпа килӗшӳллӗн, этем прависемпе ирӗклӗхӗсене хӳтӗлессишӗн ҫине тӑрать.

**1.3.** Вӑйра тӑракан саккунсемпе тата ҫак Уставпа килӗшӳллӗн, ЧНК Чӑваш Республикин территорийӗнче тата республика тулашӗнчи чӑвашсем йышлӑ пурӑнакан вырӑнсенче ӗҫлет.

**1.4.** ЧНКн ертсе пыракан органӗсем Чӑваш Республикин Шупашкар хулинче вырнаҫнӑ.

**1.5.** ЧНК гимнӗ – чӑваш халӑхӗн «Алран кайми аки-сухи» юрри, официаллӑ эмблеми – чӑвашсен «Кӗскӗ» ятлӑ тӗррин «Шурӑм пуҫ ҫалтӑрӗ» ятлӑ эрешӗ.

**1.6.** Чӑваш чӗлхи ЧНКн ӗҫлӗхпе официаллӑ чӗлхи пулса тӑрать.

**2. Тӗллевӗсем тата тӗп задачисем**

**2.1.** Чӑваш халӑхӗн хӑйӗн кун-ҫулне хӑй татса памалли, никам туртса илейми правине ҫине тӑрса хӳтӗлесси.

**2.2.** 1990 ҫулхи юпа уйӑхӗн 24-мӗш кунӗнче йышӑннӑ «Чӑваш Республикин патшалӑх суверенитечӗ ҫинчен» Деклараци принципӗсене пурнӑҫа кӗртсе пырасси.

**2.3.** Патшалӑхӑн влаҫ тата ертсе пыракан тытӑмӗсене йӗркелеме хутшӑнасси, чӑваш нацине, чӗлхине, экологипе культурине аталантарассипе, чӑваш халӑхӗн ӑс-хакӑлпа пурлӑх мулне упраса хӑварассипе ҫыхӑннӑ ыйтусене сӳтсе явса йышӑннӑ ҫӗре хутшӑнасси.

**2.4.** Халӑхӑн хӑйсене хӑй ӑнланавлӑхне аталантарасси, чӗлхе суверенитетне хӳтӗлес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнасси; чӑваш чӗлхине, наци культурипе йӑлийӗркине упраса хӑварса аталантарасси, халӑха тивӗҫлӗ вӗрентӳ тытӑмне йӗркелесси.

**2.5.** Уралпа Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсем хушшинче информаципе культура ылмашӑвне йӗркелесси, Чӑваш Республикин, Раҫҫей Федерацийӗнчи, чикӗ леш енчи ҫӗр-шывсенчи наци-демократи юхӑмӗсемпе, ытти общество организацийӗсемпе ҫыхӑну йӗркелесси, пуррисене аталантарасси.

**2.6.** Чӑваш наци интересӗсене тӗнчери правительствӑсем хушшинчи, правительствӑпа ҫыхӑнман тата регионсем хушшинчи организацисенче хӳтӗлесси.

**3. ЧНК членӗнче тӑрасси**

**3.2.** ЧНК хӑйӗн ӗҫне хӑй йӗркелесе пыракан общество организацийӗ, вӑл хӑй йышне кӗрекенсен ирӗклӗ кӑмӑлӗ тата интерессен пӗрлӗхӗ ҫинче никӗсленсе тӑрать.

**3.2.** ЧНКна ушкӑнпа та, уйрӑммӑн та кӗме пулать.

**3.3.** ЧНК йышне чӑвашсем йышлӑн пурӑнакан вырӑнсенчи наци юхӑмӗсемпе партисем, наци культура обществисем, ентешлӗхсемпе ассоциацисем, общество организацийӗсем, патшалӑхӑн тата уйрӑм ҫын харпӑрлӑхӗнчи предприятисен, ӑслӑлӑх учрежденийӗсен, пултарулӑх организацийӗсемпе ушкӑнӗсен, хӑйсен тӗллевӗпе задачисене пурнӑҫлама вӑйпа хӗсӗрлев ӗҫ меслечӗсемпе усӑ курман ытти организацисен ӗҫ коллективӗсем ушкӑнпах кӗме пултараҫҫӗ.

**3.4.** Ҫак Устава пӑхӑнакан, йышӑнакан, унта палӑртнӑ тӗллевсемпе задачӑсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе ӗҫлеме килӗшекен уйрӑм ҫынсем ЧНКн уйрӑм членӗ пулма пултараҫҫӗ.

**3.5.** ЧНК членӗн:

ЧНК ӗҫӗ-хӗлне хутшӑнма, ӑна ертсе пыракан органсене суйлама тата суйланма;

Уставри тӗллевсене пурнӑҫлама ЧНКран пулӑшу илмелли правасем пур.

**3.6.** ЧНК членӗсем:

Ҫак Устав ыйтнисене пурнӑҫлама;

ЧНКна Уставра кӑтартнӑ ӗҫсене пурнӑҫлама пулӑшма;

ЧНКн ертсе пыракан органӗсем йышӑннинe пурнӑҫлама тивӗҫлӗ.

**3.7.** ЧНК членӗсен хӑйсен ирӗкӗпе унтан тухмалли право пур.

**3.8.** ЧНК Канашӗн йышӑнӑвӗпе – хӑйсен киревсӗр ӗҫӗсемпе ҫак Устава тӳрккессӗн пӑснӑ ЧНК членӗсене организациирен кӑларма пултараҫҫӗ.

**4. ЧНК тытӑмӗ**

**4.1.** ЧНКн чи аслӑ органӗ – чӑваш халӑх делегачӗсен Аслӑ пухӑвӗ. Ӑна икӗ ҫулта пӗрре е кирлӗ чухне пуҫтараҫҫӗ.

**4.2.** Аслӑ пуху:

Уставпа программӑлла документсене йышӑнать, вӗсене улшӑнусемпе хушӑмсем кӗртет;

ЧНК ӗҫӗ-хӗлӗн тӗп ҫул-йӗрне палӑртать;

Аслӑ пуху Пуҫлӑхне, ЧНК Канашне, ЧНК Президентне, вӑл сӗннипе ЧНК икӗ вице-президентне, Ваттисен Канашне, ЧНКн ертсе пыракан тата тӗрӗслесе тӑракан ытти органӗсене суйлать;

Ҫак Уставпа килӗшӳллӗн ЧНКна пырса тивекен пур ыйту тӗлӗшпе те йышӑнусем кӑларать;

ЧНКн салатса яма тата реорганизацилеме пултарать.

**4.3.** Аслӑ пуху йышӑнӑвӗсене ЧНКн пур органӗсемпе членӗсен те пурнӑҫламалла.

**4.4.** Аслӑ пуху йышӑнӑвӗсене унӑн ӗҫне хутшӑннӑ делегатсен ытларахӑшӗ майлӑ пулсан йышӑнаҫҫӗ. Аслӑ пуху йышӑнӑвӗсем вӗсене делегатсем ҫурринчен кая мар хутшӑнса сасӑласан кӑна вӑй илеҫҫӗ.

**4.5.** Аслӑ пухусем хушшинчи тапхӑрта ЧНКна икӗ ҫуллӑха суйланӑ Канаш ертсе пырать.

**4.6.** ЧНК Канашӗ:

ЧНК членне йышӑнас тата ЧНКран кӑларас ыйту татса парать;

Аслӑ пухӑва пуҫтарать, унӑн кун йӗркине, делегатсем суйлас квотӑна ҫирӗплетет;

ЧНКн укҫи-тенкипе тата пурлӑхӗпе мӗнле усӑ курнине тӗрӗслет;

ЧНКн кулленхи ӗҫне-хӗлне палӑртать;

ЧНКн вырӑнти тата регионсенчи уйрӑмӗсен, ытти тытӑмӗсен ӗҫ-хӗлне координацилесе тӑрать;

ЧНК Канашӗн Президиумне суйлать;

ЧНК президенчӗ хыпарланине итлет;

ЧНКн ҫитес Аслӑ пухӑвӗ ҫирӗплетиччен иртнӗ Аслӑ пуху хушса хӑварнипе ҫак устава пӗчӗк тӳрлетӳсемпе хушӑмсем кӗртме пултарать;

ҫак Уставпа килӗшӳллӗн ӑна пырса тивекен ытти ыйтусене татса парать.

**4.7.** ЧНК Канашӗн йышӑнӑвӗсем вӗсене Канаш членӗсем ҫурринчен кая мар хутшӑнса ҫирӗплетнӗ пулсан кӑна вӑйра тӑраҫҫӗ.

**4.8.** ЧНК Канашӗн Президиумӗ:

ЧНК Канашне ЧНКна йышӑнма е унтан кӑларма тӑратнӑ кандидатурӑсемпе паллаштарать;

ЧНК Канашӗнче пӑхса тухма документсен проекчӗсене хатӗрлет;

ЧНК Канашӗнче пӑхса тухса ҫирӗплетме ҫитес тапхӑрти ӗҫсен планне хатӗрлет;

ЧНК Канашӗ хушнипе ытти ӗҫсем пурнӑҫлать.

**4.9.** ЧНК Канашӗн Президиумӗн йышӑнӑвӗсем вӗсене ларӑва Президиум членӗсен иккӗ виҫҫӗмӗш пайӗнчен кая мар хутшӑннӑ чухне кӑларнӑ пулсан ҫеҫ вӑйра тӑраҫҫӗ.

**4.10.** Аслӑ пуху Пуҫлӑхӗ:

Аслӑ пуху ӗҫне ертсе пырать;

ЧНК Канашӗн тата Президиумӗн ларӑвӗсене пухать, вӗсене ертсе пырать;

ЧНК Канашӗн тата Президиумӗн ӗҫ планӗсене мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗслет.

**4.11.** ЧНКн ӗҫ тӑвакан чи аслӑ должноҫри ҫынни – ЧНК президенчӗ.

**4.12.** ЧНК президенчӗ:
администраци йӗркелет, ертӳҫине палӑртать;

ЧНК Аслă пухăвĕн тата Канашĕн йышăнăвĕсене тÿрремĕн пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлет;

ЧНК Канашне тата ЧНК Аслă пухăвне йышăнусен, ытти документсен проекчĕсене сĕнет;

патшалăх влаçĕн саккун кăларакан, ертсе пыракан органĕсемпе, общество организацийĕсемпе, пĕтĕм тĕнчери правительствăсен хушшинчи, правительствăсен тулашĕнчи тата регионсен хушшинче йĕркеленĕ организацисемпе хутшăннă чух ЧНК тĕллевĕсене палăртать тата унăн интересĕсене хÿтĕлет;

ЧНК ячĕпе хăй тĕллĕн ĕçлет, калаçусем ирттерет, ЧНК ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă документсене алă пусса çирĕплетет;

ЧНК Канашĕн Президиумĕпе пĕрле ĕç планне, тăкакпа тупăш сметине хатĕрлет, ăна çирĕплетме ЧНК Канашне тăратать;

ЧНК пурлăхĕпе, ытти хатĕрĕсемпе тÿрремĕнех хуçаланать;

чăваш çынни хăш вырăнта тата ăçта пурăннипе пулнине пăхмасăр унăн прависене хÿтĕлеме пулăшать;

ЧНКн йĕркелӳ, финанспа хуçалăх ĕçĕсемшĕн Аслă пуху умĕнче явап тытать;

кашни 6 уйăхра ЧНК Канашне хăйĕн ĕçĕ пирки хыпарлать;

Çак Устав, Аслă пуху шаннă ытти полномочисене пурнăçлать.

**4.13.** ЧНК Президентне тата малалла та суйланмалли правăпа икĕ çула суйлаççĕ.

**4.14.** Ĕçлеме пуçлас умĕн Президент ЧНК Аслă пухăвĕ тата Ваттисен Канашĕ умĕнче тупа тăвать. Тупа сăмахĕсене Ваттисен Канашĕ хатĕрлесе çирĕплетет.

**4.15.** Кирек те мĕнле сăлтавсене пула ЧНК президенчĕ хăйĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пырайми пулсан ЧНК Канашĕ унăн ĕçĕсене хăш вице-президент пурнăçласа пырассине палăртать. Çав вице-президент Ваттисен Канашĕпе ЧНК Канашĕ умĕнче тупа тăвать те ЧНК Президенчĕн тивĕçĕсене пурнăçлама тытăнать.

**4.16.** Аслă пуху чăваш халăхĕшĕн пысăк та сумлă ĕç тунă çынсенчен Ваттисен Канашне суйлать.

**4.17.** Ваттисен Канашĕ:

ЧНК Аслă Пухăвне чаплăн уçма хатĕрленет;

ЧНК президенчĕн Тупа сăмахĕсене хатĕрлесе çирĕплетет;

чрезвычайлă лару-тăру вăхăтĕнче ЧНКн ертсе пыракан органĕсен ĕçĕ-хĕлне, йышăнăвĕсене вăхăтлăха чарса лартма пултарать;

ЧНК Аслă пухăвĕ хушнă ытти ĕçсене тăвать.

**4.18.** Аслă пуху çавăн пекех ЧНК Канашĕ çирĕплетекен уставсемпе тата положенисемпе килĕшÿллĕн ĕçлекен ытти органсем суйласа хăварма пултарать.

**4.19.** ЧНКн регионсенчи тытăмĕсем пур. Вырăнсенчи уйрăмсем республика, облаç, край, округ, хула, район шайĕнче унта пурăнакан чăвашсенчен йĕркеленеççĕ.

**4.20.** ЧНКн вырăнсенчи уйрăмĕсем хăйсен уставĕсемпе, положенийĕсемпе килĕшÿллен, хăйсен регионĕсенчи наци культура, ытти интересĕсене шута илсе, ЧНКн ертсе пыракан органĕсемпе çыхăнса ĕçлеççĕ.

**5. Право статусĕ, пурлăх**

**5.1.** ЧНК юридици вăйĕллĕ, унăн уйрăм баланс пур, вăл тĕрлĕ пурлăха харпăрлăхра тытма, хуçалăхра усă курма е оперативлă ертсе пыма пултарать, хăйĕн обязательствисемшĕн çав пурлăхпа явап тытать, хăй ячĕпе пурлăх илме, пурлăхпа çыхăннă тата харпăр хăйĕн пурлăхпа çыхăнман прависемпе усă курма, обязательствăсем пама тата пурнăçлама, судра тавăç пуçаракан е явап тытакан пулма пултарать.

**5.2.** ЧНКн хăйĕн ячĕллĕ пичет, штамп, официаллă бланксем, значоксем, ытти реквизит, çавăн пекех хамăр тата ют çĕр-шывсенчи банк учрежденийĕсенче хăйĕн расчет, валюта счечĕсем тата ытти счетсем пулма пултараççĕ.

**5.3.** ЧНК пурлăхĕ юридици вăйĕнче тăракансем тата уйрăм çынсем хăйсен ирĕкĕпе хывнă укçа-тенкĕрен, çак Уставпа килĕшÿллĕн ирттерекен мероприятисенчен, саккунпа чарман ытти çăл куçсенчен пуçтарăнать.

**5.4.** Çак Уставпа тата вăйра тăракан саккунсемпе килĕшÿллĕн ЧНК тĕрлĕрен фондсем, предприятисем йĕркелеме пултарать, вĕсем ЧНК Уставĕнчи тĕллевсемпе задачăсене пурнăçламашкăн укçа-тенкĕ уйăрса пама пултараççĕ.

**6. ЧНК ĕçне чарса лартасси**

**6.1.** ЧНК хăйĕн ĕçĕ-хĕлне чăваш халăх делегачĕсен Аслă пухăвĕн йышăнăвĕпе, пĕтĕм делегатсен иккĕ виççĕмĕш пайĕ сасăласа йышăннă пулсан е вăйра тăракан саккунсемпе килĕшÿллĕн, судăн саккунпа вăя кĕнĕ йышăнăвĕпе чарса лартать.

**6.2.** ЧНК хăйсене хăй салатса ярсан е пĕтерсе хума йышăнсан ликвидаци комиссийĕ йĕркелеççĕ, вăл, çак Уставпа тата вăйра тăракан саккунсемпе килĕшÿллĕн, юлнă пурлăх, укçа-тенкĕ, ытти хатĕрсен шăпине татса парать.

1997 ç. юпа уйăхĕн 25-мĕшĕсенче йышăннă.

# ЧĔЛХЕ ПĔЛНИ КАМА ЯПĂХ?

[ЧР Патшалăх Канашĕн XXXVI сессийĕнчен] «Чăваш Республикин Президенчĕ çинчен» саккуна иккĕмĕш вулавпа йышăнчĕç. ЧР прокуратурипе ытти тĕрлĕ «саккун сыхлавçисем» саккунăн 5-мĕш статйинчи «Чăваш Республикин Президенчĕ патшалăх чĕлхисене пĕлмелле» текен сăмахсене каларса пăрахма сĕннĕ. Асăннă органсем çакна РФ Конституцийĕпе саккунĕсене хирĕçлет тесе ăнлантараççĕ. [Чăваш наци конгресĕн президенчĕ] Г.Н. Архипов, [Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ] А.П. Леонтьев депутатсем ЧР Конституцийĕнче ку ыйтăва уçăмлăн палăртнине аса илтерчĕç. Саккунра çапла çырса хума йышăнчĕç: «Суйлав правипе усă куракан, Чăваш Республикинче пурăнакан, Чăваш Республикин патшалăх чĕлхисемпе калаçакан Раççей Федерацийĕн гражданинĕ Чăваш Республикин Президентне суйланма пултарать».

Сесси Чăваш наци конгресне патшалăх енчен пулăшасси çинчен калакан саккун йышăнчĕ.

Иван КЛЕМЕНТЬЕВ.
*«Хыпар», 2.12.1997, 242№.*

# ТĂВАН ХАЛĂХĂМĂРА

**Чăваш наци конгресĕ чĕнсе калани**

Аслă ăрусем пире чăваш ятне çĕртмесĕр пурăнма пилленĕ. Çав пилпе пĕрле пуян чĕлхе, çирĕп йăла-йĕрке, таса сывлăх, сăпайлăхпа маттурлăх, ĕлккенлĕхпе ĕçченлĕх, юрату тата çĕр чăмăрĕн чи илемлĕ вырăнĕсене Тăван çĕр-шывлăха парнелесе хăварнă. Вилĕмсем витĕр асапланса тухнă несĕлсем халăх ăс-хакăлне харама яман, ăна упранă, пуянлатса тăнă.

Аса илĕпĕр: Атăлçи Пăлхар патшалăхне вăрă-хурах аркатсан чăваш хăйĕн тĕнне, йăли-йĕркине, сăвви-юррине, тĕрри-эрешне чăтлăх çырмара та пулин упраса пурăнма ăслай çитернĕ. Кайранхи ĕмĕрсенче пусмăрпа синкер пуç çине ансан та, тĕнче анине хаяр вăрçăсем çапсан та чăваш ывăлĕ-хĕрĕ Тăван çĕр-шывăмăрпа этемлĕх умĕнче намăса юлмарĕ.

Нацин чун еткерĕпе, паттăр кун-çулĕпе, ĕçри ăсталăхĕпе, иксĕлми чĕлхипе, нихçанхи аптраманлăхĕпе тивĕçлипе мăнаçланма пултаратпăр. Çак ырă пурлăха пирĕн çирĕп упраса тăмалла, малалла аталантарма çĕнĕ майсем тупмалла. Тĕнчери халăхсем XXI ĕмĕре хăватлă аталану çулĕпе утса кĕресшĕн. Чăваш халăхĕ те ыттисенчен кая тăрса юлма пултараймасть. Танлăхшăн, йĕркеллĕ пурнăçшăн, наци чысĕшĕн чăмăртанса кĕрешме чан çапрĕ!

**Чăваш ваттисем, кукаçей-кукамай, асатте-асанне!** Сирĕн умра эпир пуç таятпăр. Эсир хăвăршăн, кил-йышшăн кăна мар, Тăван çĕр-шывпа тăван халăхшăн пайтах тар, юн, куççуль юхтарнă. Сирĕнтен чылайăшĕ халĕ те çамрăк ăру малашлăхĕшен чунтан тăрăшать: йăхсен, ялсен, хутлăхсен историне çырать, халăхăн тĕрлĕ ăсталăхне яш-кĕрĕме парса, вĕрентсе хăварать. Ялсенче ваттисен хуралĕсем чĕрĕлме пуçларĕç. Наци конгресĕ çак юхăма ырлать, ăна пур çĕрте те йĕркелеме вăй-хал сунать. Чăваш ваттисем, эсир хăвăрăн витĕмĕре ял хушшине ытларах сарма тивĕç! Эсир пил парса тăмасан халăх телейлĕ пулаймĕ!

**Кун çути аннемĕрсем, чун çути хĕр-упраç!** Йывăр сире паян. Чылай-чылай çемьешĕн савăнăç хĕвелĕ пулма пăрахрĕ вĕт-шакăр ача-пăча. Хунав ачасем асанне-асатте (мамак-маçак) вĕрентĕвне ăша хывми пулчĕç, яш-кĕрĕм сывлăхпа юрату телейне нĕрсĕрлĕхпе хутăштарчĕ.

Çынна пурлăх-çуклăхпа виçме пуçлани сапăрлăхпа вĕрентӳ ĕçне пырса çапрĕ. Талантлă пин-пин çамрăкăн ăс-хакăл çулĕ хупăнчĕ. Ача-пăчамăра, ывăл-хĕрĕмĕре паян нихçанхинчен хытăрах упрамалла пирĕн. Наци хуçăк ăслă, хĕсĕк чунлă ăрупа малалла каяймĕ. Нацие тĕрĕслех паттăрĕсемпе хĕрӳ ĕç ăстисем кирлĕ. Çĕр-шыва хÿтĕлеме тарăн пĕлÿллĕ, çирĕп сывлăхлă ывăл-хĕр кирлĕ. Шăла çыртса, вăя пухса çĕнĕ хастарлăх тупасчĕ. Мĕскĕнĕ юлма юрамасть. Ăс-тăнлă ачамăрсене ял шкулĕнчен пуçласа чи сумлă академисем тарăн вĕренме ярас пулать. Нацин аслă пурлăхĕ — сывă та ăслă ача-пăча, хăюллă та пĕлÿллĕ яш-кĕрĕм! Çак пурлăхшăн кĕрешмен чăваш хĕрарăмĕ нихçан та сăвап кураймĕ!

**Вăй питти арсем, маттур йĕкĕт-каччă!** Сирĕн çирĕплĕхĕрпе ĕçченлĕхĕре тĕнче пĕлет, хисеплет. Анчах тăрлавсăр самана сире ĕççĕр, шанчăксăр, ĕмĕтсĕр хăварчĕ. Хăшне-пĕрне вăл Чернобыльте, Чечняра кашкăр çулĕпе чуптарчĕ, пуçăрсене кастарчĕ.

Эсир тарçа кĕрĕшсе Чулхула, Чĕмпĕр, Самар, Сарту хирĕсене йÿнĕ хакпа акса-пухса тăратăр. Эсир тарçа кĕрĕшсе йÿнĕ хакпа çурçĕр кăмрăкне кăларатăр, çĕпĕр нефтьне уçлатăр. Уншăн наци перекетне нимĕнле пайта та кĕмест, вăл ют кĕсьесене юхса каять. Республика ертÿçисене ĕç ресурсĕсемпе пĕлсе усă курма хистес пулать! Чăваш арне чыслă ĕç кирлĕ. Алла-аллăн тытăнса, тăванлăхпа тупа туса хамăр пурнăçшăн хамăрах кар тăрар.

**Вĕреннĕ çыннăмăрсем, ертÿçĕ шайне хăпарнă йăхташăмăрсем!** Килте-и, аякра-и, мухтавлă-хисеплĕ-и эсир – тăван халăхăмăр çине, унăн лару-тăрăвĕ çине тимлĕн пăхса илсемĕрччĕ! Мĕнле шăпа кĕтет чăваш нацине çак аслă тĕнчен ытамĕнче? Эсир тăван йăхри сиенлĕ йăласене сирме, малашлăхлă сутă туртăмсене çул пама тивĕçлĕ. Халăх хушшинчи хирĕçÿ-тĕркĕшÿшĕн, суяшăн, пăтрашушăн пуринчен малтан эсир айăплă. Халăхăн малашнехи шăпишĕн эсир яваплă! Халăх сире ăшă вырăнта аслă шутланнăшăн мар, тĕрĕс кĕрешÿре малта пулнăшăн асра хăварĕ. Аса илĕр Охатер Томеева, Тойтереке, Бичурина! Аса илĕр Яковлева тата унăн халал сăмахне: «Пайсăр тăрса юлнă хăвăрăн мĕскĕн чăваш тăван халăхăра пулăшса пурăнмалла, вĕсене ăçтан та пулин катарăн пулăшу килĕ-ха тесе тăмалла мар. Ан манăр!»...

**Тулай тата тулаш чăвашĕ!** Пăрлă çил айĕнче пулсан та, хĕрнĕ хăйăр тăрăх утсан та Атăл çинчи тĕп çĕр-шывна асран ан кăлар. Пултарнă тарăн ăна пулăшма тăрăш, хăвна йывăр чухне унран хевте илме вĕрен! Тăванлăхран ан писсемччĕ – тăванлăх тимĕртен çирĕпрех!

Раççей анлăшĕнчи пĕтĕм тăван-хурăнташлăхра пĕрлĕх туйăмне чĕртесси – санăн тÿрĕ тивĕçÿ. Хĕсĕнсе çитнĕ Чăваш Республикинчен хăвăн ирĕклĕ кăкăру çине тăвану-ентешÿсене ратнепе, урампа, ялпа йышăнса тачă çыхăну йĕркелесе тулăх пурнăç тума пулăшаймăн-ши? Тачă йышпа куçса пынă тăвансем санăн пурнăçна çĕнĕ хăват, çĕнĕ шанăç парса çĕклентерĕччĕç.

Чăваш тăванлăхсăр пурăнаймасть. Чăваш тĕнчи аслă. Çав аслă тĕнче тăванлăх туртăмне çухатмасан хăйсене пур енчен те çăмăллăх кÿрĕччĕ!

**Халăхăмăр!** Пире ютран кĕрекен тăшман пайтах тустарнă, халĕ те вăрттăн аркатать. Наци ăнкарулăхĕ çителĕксĕртен хамăр килтех мăшкăл куратпăр. Чăваш хутлăхĕнчи чылай ертÿçĕ ку тарана çитсе те халăхсен танлăхне, ĕçлекен çынсен чысне хисеплеме хăнăхаймарĕ. Вĕсем манса кайрĕç: тÿре-шарана халăх тăрантарса тăрать, урăхла мар! Халăха юрăхлă ĕçлемен тÿре-шарана иртĕхтерсе пурăнтарма нихăш халăхăн та тивĕçĕ çук!

**Халăхăмăр!** Пире шалтан кăшлакан тискер тăшман – вăй-хала, тăн-пуçа çухатса ĕçкĕпе иртĕхни! Шутлăр-ха: ĕçнĕ-и пирĕн маçаксем хальхи пек? Çук, ĕçмен! Паллах, чăваш йăли, туйĕ-çуйĕ эрех-сăрасăр пулман. Вăл чăваш сĕтелĕ çинче вăрçă-харçă вăхăтĕнче те чыслă ларнă, килен-каяна савăк панă, чĕлхене çемçетнĕ, çураçу тупма пулăшнă. Чăваш йĕрки ĕçме-çимене тиркемест. Ĕçме пĕлменнине, хирĕлсе çапкаланнине тиркет! Ĕçке ярăннăран ĕç йĕрки арканчĕ. Ача-пăча чăлах çуралать, яш-кĕрĕме вилĕм касать. Пурнăç шайĕ чакни, сут çанталăк вараланни çитмест, халăх хăй хăватне хăй аркатать.

Çамка çине картса хурар: эрех-сăра – йывăр ĕç хыççăн сипленмелли эмел кăна! Ĕçсе супни – намăс, наци умĕнчи тискер ĕç.

**Халăхăмăр, чăваш халăхĕ!** Эпир – санăн ачусем, кирек ăçта пурăнсан та – пĕр наци çыннисем. Çак аслă тĕнчере пирĕн хамăра тивĕçле талай, чыс, хисеп, сăн-сăпат пур. Пире тĕнче ыттисемпе танах картать, ыттисемпе тан ирĕксем парать. Пирĕн унпа пĕлсе усă курмалла. Хăйне хăй тасалса тăрайман шывсем шăршланаççĕ, хăйсене хайсем упрайман халăхсем çухалаççĕ. Чăваш нацийĕшĕн шалтан тасалмалли, ваттисен халалне пуç тавра çавăрмалли вăхăт çитрĕ.

Чăваш тĕнчине тăванлăхпа тасалăх тыттăр! Ырри çĕнтертĕр, вăй патăр, упратăр! Чунпа та ăспа, ĕçпе те хастарлăхпа чамăртансамччĕ, халăхăм!

Çапла пултăр! Çапла пултăр! Çапла пултăр!

Шупашкар, 1997, юпа, 25.
*«Хыпар», 20.12.1997, 254№.*

## ХАЛĂХ ЯЧĔПЕ ЭЛЕМ ÇĔКЛЕРĔМĔР ПУЛСАН...
### ЧНК III Аслă пухăвĕ çуратнă йывăр шухăшсем

1.
Коммунистсенчен юлнă чылай йăла-йĕрке паян кун та чипер халлĕнех пурăнать. Унччен çаплаччĕ: пайта кÿрет-и, сăтăр-и? – ăна-кăна никам та шухăшласа илмен, мероприяти ирттерни пуринчен те хаклă пулнă. Шăп çавна аса илтерчĕ Аслă пуху та. Юрĕ, ирттертĕмĕр. Пайталлă пултăмăр-и, сăтăрлă-и? Н. Сироткин пенсионер кăна мар, пуху хыççăн ку юлашки пулмин пырĕччĕ текенсем пайтахăн пулчĕç.

Ку шурă та леш хура тесе татса калас килмест. Анчах пĕр япалана аса илтересех тетĕп. Халăх ячĕпе элем çĕклерĕмĕр пулсан, общество организацийĕн те патшалăх тытăмĕн шайне çĕкленмелле. Патшалăха та халăхшăн тунă. Анчах унăн тĕллевĕсемпе ĕç мелĕсем урăхларах. Наци конгресĕн виççĕмĕш Аслă пухăвĕччен хăйĕн чăн-чăн вырăнне, хăйĕн «темине», хăйсене кăна тивĕçлĕ ĕç меслечĕсене тупмаллахчĕ ĕнтĕ. Пĕрремĕш Аслă пухура Геннадий Волков академик «Тăвалла пулсан та – малаллах!» тесе чĕнсе каланине пурте-пурте ас туса юлнă, анчах вăлах «Конгресс чăмăртама хевте çитертĕмĕр пулсан – çак шайран чакас марччĕ» тенине манса кайнă. Ун чухне, чăнах та, истори самантне тĕрĕс туйса илтĕмĕр. Чăваш чĕрĕлĕвĕ ун чухнехи çĕкленĕве тепре туйса курайĕ-ши? Ăна татса калаймастпăр. Пĕр туххăмра халăх хавалĕпе ăнланăвĕ Наци конгресĕ тумалăх йÿççе çĕкленчĕ. Ун чухне патшалăх органĕсем те наци организацийĕсене оппозицие тăратма пăрахнăччĕ. Çавăн чухнех наци конгресĕн патшалăх тытăмĕпе пĕр пичеве тăмаллаччĕ. Пулмарĕ.

Пĕрремĕш пухури çĕкленÿ сÿнсе те сÿнсе пычĕ. Чăваш наци конгресĕ, пĕтĕм халăх ячĕпех элем вăлкĕштерме хăтланать пулин те, пĕр кĕптĕр-кĕптĕр парти шайне анса ларчĕ. Çавна çирĕплетме пуçтарăнтăмăр та виççĕмĕш Аслă пухăва.

Чăваш ĕçĕ мĕн тери юхăнса çитнине туйса илме икĕ кун хушши лару залĕнче пулма та кирлĕ марччĕ. Чăваш академи театрĕн алăкĕнчен кĕнĕ-кĕменех куçа курăнать те хăлхана кĕретчĕ. «Занялася заря расписная» вырăс юррин кĕввипе çырнă «Хуняма» юрă хăлхана хупласа лартать, вăл йăшнă пек пулать кăна, тутар кĕввипе чăвашла юрлакан тепĕр «çăлтăрăн» сасси янраса каять. Çÿлелле хăпарас тесе пĕр енчи картлашка патне пыратăн та – сана пĕр çĕклем хаçат тыттараççĕ, тепĕр енче те çавах. «ЛДПР» хаçатне çын çук çĕререх персе хăваратăн кăна, тепри хăваласа çитет. Суйлав умĕнхи хĕвĕшÿ пырать иккен кунта.

Çÿлерех хăпаратăн та – кассетине сутаймасăр аптăраса çитнĕ Иван Аршинов композитор тăрать. Николай Ытарай хăйĕн «Азбуки-ăспуххине» сутас тесе ĕштеленет.

Малтанхи кунхине çын пурччĕ-ха, иккĕмĕш кунхине вара ретсем сайралчĕç. Пайти çакă пултăр терĕç пулĕ чăтăмлăраххисем, мĕн сасăлама сĕнсен те сасăлама тытăнчĕç, чăтăмсăртараххисем туха-туха кайрĕç. Уйрăм-уйрăм çынсем кăна пулсан темех марччĕ-ха, делегацин-делегацин кайма тытăнчĕç.

Çакăн чухне Аслă пухупа Аслă пуху хушшинче ЧНК мĕн туни кĕретĕн курăнчĕ. Хальччен çурăм хыçĕнче пулса иртнĕ влаç кĕрешĕвĕ халăх куçĕ умне тухрĕ. Таçта улах вырăнта мар, трибуна умĕнчех пĕр-пĕрне кăкăртан ярса илнине те куртăмăр, пуху президиумĕ ячĕпе çырнă хутсене леçме хăпаракансене те чаракан пулчĕç, сăмах калас е сĕнÿ парас текенсене çывăха та ями пулчĕç.

Чăваш наци конгресĕн Уставне çирĕплетрĕмĕр кăна – тӳрех улшăнусем кĕртме тытăнтăмăр. Устав проектне çыраканĕ чăваш ĕçне мĕнлерех лайăхлатас тесе мар, кама мĕнлерех сумлă пукан тупса парар-ха тесе кăна шухăшлани те тӳрех куçа тăрăнать. Шăпах пукан тивĕçменнипе ĕнтĕ икĕ вице-президент мар, виççĕ тумалла тесе калаçу хускатрĕç те.

2.

Эх, сиксе тăринччĕ те пĕри – ан сӳпĕлтетĕр-ха пули-пулми тесе кăшкăрса тăкинччĕ... Çур сехет ытла явăнчĕ çак шухăш пуçăмра. Сиксе тăракан та, кăшкăрса тăкакан та пулмарĕ. Кирлĕччĕ, питĕ кирлĕччĕ. ЧНК мĕн пур ыйтусене ăнăçлă татса панă та – халь ун пек, кун пек ыйтусене хускатма та пултарать пулсан татахчĕ.

Кăçалхи ака уйăхĕнче «Хыпарта» «Намăс хапхи» çинчен чăнах та пĕр материал пичетленсе тухрĕ. Тĕрлĕ шухăшлăх ку чухне, çыраччăрах пуçа мĕн килнине тесе ирттерсе янăччĕ. ЧНК Аслă пухăвĕнче çак ыйтăва чăнласах çĕклесен аптăрасах ӳкрĕм.

Аваллăхра темле тискерлĕх те пулнă. Цивилизаци сăмаха хăрамасăрах калань чухне курайман çын хапхине тикĕтпе сăрлас тенĕ шухăш çын пуçне пырса кĕме пултарать тесе те калас килмест. Курайман çын темелле марччĕ-ха, айăплă çын темелеччĕ. Чăваш халăхĕ умĕнчи айăпа кам палăртмалла-ха? Манăн кăна мар, пурин те ун умĕнче айăпăмăр пурах. Хăçан кăларĕç намăс хапхи витĕр? Малтан хăть пĕлтерсе хурĕç-ши? Тата-çке-ха çав çын айăпне каçарттараймасан, ăна чăваш çĕрне те пытарттармаççĕ.

Намăсланса лартăм вара çав «Намăс хапхишĕн». Ытах та вăл кирлех пулсан, атьăр, «тип-шара» та чĕртсе тăратар. Авал ылханĕ чăмппи тулса çитнĕ чăваш хăй тавăрас тенĕ çын хапхинчен кайса çакăннă. Кăларар та йышăну, тытăнччăр чăвашсем пĕр-пĕрин хапхинчен каякая çакăнма, урăхла каласан, тип-шар кăтартма.

Эпир пурте хамăр тăвакан ĕçе кăна чи кирли тесе шутлатпăр. Çавăнпах пулĕ-ха хамран пĕрре те хăпа пĕлмен ĕççем юларах пыни, тепĕр чухне сӳнсех те ларни çав тери пăшăрхантарать. Наци конгресне тусан, чăваш чĕрĕлĕхĕ йывăрпа пулсан та, тăваллах каясса питĕ шаннăччĕ. Кутăнла пулса пычĕ-çке пĕтĕмпех.

Мĕн тумалли паллă, анчах пирĕн наци хӳтлĕхĕ – унăн Конгресĕ – политика заявленийĕсемсĕр пуçне нимĕн тума та пĕлмест. Республикăра ЧР Президенчĕ хускатнă ыйту пирки шав тухса кайрĕ те – пирĕн ЧНК Республика Президенчĕпе Патшалăх Канашĕн депутачĕсене пĕр кунта суйлани вырăнлă мар тесе сасă пама васкарĕ. ЧНК ĕçĕ мар-çке-ха ку. Политика партийĕсемпе юхăмĕсен ĕçĕ. Çапла, хамăрăн сӳсмене хывса пĕтĕмĕр те такамăнне тăхăнса ятăмăр. Халăх умĕнче курăр, тар капарсах ĕçлетпĕр тесе кăшкăрашатпăр вара.

3.

ЧНК вырнаçнă çурт тахçанах халăх çурчĕ пулмаллаччĕ. Чăваш ĕçĕпе Шупашкара килнĕ çын чи малтан унта кĕрсе тухайтăр та мĕн пур ĕçне татса пама пултарайтăрччĕ. Пулаймарĕ. Ку таранчченех вăл шыраса тупма çук пӳлĕмсенче ларать. Халăх ячĕпе элем çĕкленĕ хыççăн çаплах мĕскĕнленме юрамасть те çав.

Халь пире мĕн пурĕ те пĕрлĕх çитмест. ЧНК тумалли ĕçчĕ вăл. Халăх кирек мĕнле хатарлă чухне те хăйĕн элити тавра пуçтарăнать. Анчах элита – пултарулăх интеллигенчĕсем – сапаланса пĕтнĕ. Мĕн турăмăрха наци конгресĕ пулса пултарулăх союзĕсене чăмăртас тесе? Нимĕн те тенипе кăна çырлахаймăпăр. Историксене кĕтер мар-ха, паянах хак парар. Наци конгресĕ чылай чухне хăй пĕрлештерекен вăй мар, аркатакан вăй пула-пула кайрĕ. «Одиозуссемпе» алă вараласшăн пулмасăр пĕр чухне шыв сыпса тăтăмăр, тепĕр чухне «националсене» хӳтĕлерĕмĕр. «Одиозусĕсем» те, «националĕсем» те чап çитменнипе кăна пĕрлехи турта хушшинчен туха-туха тарчĕç-çке. Чăн-чăн чăвашла ку. Мунча пӳртре пурăнам та патша пулам тени кăна ку. Писательсен союзĕ арканнине лайăхрах курнă та – çавăн çинченех калам-ха. Кĕретлĕх самани пуçлансан хăйсене писатель тесе шутлакансен сасси чăн-чăн писательсен сассине хупласа хучĕ. Мускавра мĕн пулса иртнине эпир яланах пĕлсе тăнă. Мускав хумĕ Шупашкара çитсе çапрĕ, малалла та иртсе кайрĕ. Эпир ун айне пултăмăр, ытти республикăсем тип-типех юлчĕç.

Мунчара пурăнать пулсан та патша патшах, унăн та «Эпĕ – патша!» тесе кăшкăрас килет, ăнă та «И-я, патшах, ара», – тесе çирĕплетекенсем кирлĕ. Пуçланчĕ вара. В. Погильдяков вырăс писателĕсен ассоциацине, Н. Исмуков поэтсен ассоциацине, Б. Чиндыков хăйĕн пултарулăх организацине туса хутăмăр тесе халăха хыпарларĕç. «И-я, ия» текенсем тупайманнипе пĕрисем хăйсем пуçарнă ĕçе пăрахрĕç. Юхма Мишши вара, Мускавсенчен тĕслĕх илсе, «альтернативлă« союз тума пултарчĕ. «Пысăк» союза кĕрейменнисем пурте-пурте унталла сулăнчĕç. Унччен виçĕ кĕнеке кăлармасăр никамран заявлени йышăнман. Çапла вара, Юхма Мишши тăрăшнипе писатель ĕçĕ професси пулма, Писательсен союзĕ профессионалсен организацийĕ пулма пăрахрĕç.

Халĕ ĕнтĕ пурте куратпăр, пурте пĕлетпĕр. Ку халăха хирĕçле ĕç пулчĕ. Анчах никамăн та патшан пуç кăшăлне хывас килмест.

4.

Манăн шухăшăмпа – Чăваш наци конгресĕн чи малтан политика вăййинчен тухмалла та хĕрсе выляня чух вараланнине силлесе тасатмалла. Вара халăх ячĕпе çĕкленĕ элеме аса илмелле.

Ĕмĕтĕн чикки çук. Ĕмĕт хыççăн кайса эпир час-часах килти ĕççене манса каяшăр. Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине кĕрес тени пĕрре те начар мар, анчах унта асатте çăпатипе каймалла мар-çке. Малтан хамăр республикăмăрта цивилизаци ретне кĕмелле. Тĕнчене тухайман халăхсен организацийĕн (ТТХО) ретне тăни эпир тĕнчене тухнине пĕрре те пĕлтермест, эпир хамăр пек кĕлмĕççем патне кайса ларакан пултăмăр тени кăна вăл. Кĕлмĕçпе кĕлмĕç кĕлмĕç телейĕ кĕлпе хутăш тесе кăна калаçма пултарать.

Халăх ячĕпе элем çĕклерĕмĕр пулсан – хамăр çинчен манса каяр, кашни чăваш патша пулма пăрахтăр. Пĕр патша кăна юлтăр – Чăваш халăхĕ. Çапла халал парса хăварман-и-ха пире Яковлев асаттемĕр?

Денис ГОРДЕЕВ, писатель.
*«Хыпар», 20.12.1997, 254№.*

## Геннадий АРХИПОВ: «МĂНАÇЛĂ ПУЛАР!»

*«Хыпар» вулаканĕ ЧР Патшалăх Канашĕн Культура тата наци хутшăнăвĕсем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председательне Г.Н. Архипова пĕлетех. Сахал мар ыйтăва çуматса пирĕн хаçатра тухса калама тивет унăн. Чăваш наци конгресĕ хăйĕн Аслă пухăвĕнче Геннадий Николаевича ЧНК президентне суйларĕ. Апла, президентпа тĕл пулма сăлтав тупăнчĕ.*

**– Геннадий Николаевич, сирĕн пурнăçăр «Хыпар» хаçатпа та тачă çыхăннă. Нумай çул эсир унăн Етĕрнери корреспонденчĕ пулса ĕçленĕ. Калăр-ха, политик пулма лайăхрах-и е журналист пулма-и?**

– Чăннипе, политик пулам-ха теменччĕ те. Ăнсăртран тенĕ пек пулса тухрĕ. 1990 çулта Аслă Совета суйланă чухне Етĕрне округĕпе пĕр кандидат çеçчĕ. КПСС Етĕрне райкомĕн 1-мĕш секретарĕ Л. Софронов хăйсене майлă реформаторччĕ – альтернатива кирлĕ терĕ. Мана та сĕнчĕç. Кĕрешсе пăхам терĕм. Анчах çĕнтермелле пулчĕ...

**– Хăвăрăн тĕллевĕрсем, программăрсем т.ыт. те пулнă-и?**

– Ун пекки те пулнă. Журналист ĕçĕпе ялсенче çӳренĕ, яланах халăхпа курнăçнă май проблемăсене тата ыттине курнă, шухăшланă. Депутат пулни пулăшĕ тенĕ.

**– Сăмах май, Патшалăх Канашĕн сессийĕсенче пулатăп, унăн ĕçĕхĕлне сăнатăп. Ларусем хыççăн ывăннипе пуç «шавлама» пуçлать. Депутат ĕçне хăвăр енчен кăштах сăнласа парсамăр.**

– Çапла, сессисем чылай чухне тавлашуллă иртеççĕ. Сессисем хушшинче те çĕр тĕрлĕ ыйту татса пама тивет. Эпĕ ертсе пыракан комитетăн тулли ячĕ: «Культура, вĕрентӳ, ăслăлăх, нацисем хушшинчи хутшăнусем, информаци политики тата çыхăну енĕпе ĕçлекен»... Куратăр ĕнтĕ, питĕ нумай проблемăсем. Хамăн суйлавçăсемпе тĕл пулусем ирттерме те

вăхăт çитмест. Манăн вара кашни яла, кашни колхоза çитес килет. Май пулнă чухне тăван хаçатăм урлă суйлавçăсенчен каçару ыйтатăп. Çитменнине, хальхи депутатăн ĕçĕ унччenхинчен урăхларах. Калăпăр, ялсенчи çул, кĕпер тăвас, газ пăрăхĕ хывас тата ытти ĕçсене илер. Маларах укçа уйăрса бюджета кĕртсе хăваратпăр та урăх тĕкĕнместпĕр. Нумай ĕçе район пуçлăхĕ татса парать. Эпир пĕтĕмĕшлерех ыйтусемпе ĕçлетпĕр. Паллă, апла пулин те халăхпа çыхăнусем çирĕп пулмалла.

**– Уйрăмах хăш ыйтусемпе ĕçлени чунра тарăн йĕр хăварать?**

– Пурте пĕлтерĕшле тата кирлĕ ыйтусем. Каткăслăх енчен эпĕ наци ыйтăвĕсене палăртнă пулăттăм. Сессисенче ăнланасшăн пулманни, пĕр шухăшлисен ушкăнĕ пĕчĕкрех пулни сисĕнет.

**– Ку ушкăнри тĕп вăй – хăш депутатсем-ха?**

– Эпĕ ăна 3-мĕш вăй тетĕп: коммунистсемпе демократсен йышĕсем те пур-çке. Пирĕн хушăмăрта – В. Тимофеев, П. Смирнов, А. Леонтьев, П. Арсентьев, В. Яруткин, П. Давыдов. Ялтан суйланнă тата хăш-пĕр депутата кĕртме пулать. Вĕсем наци ыйтăвне ăнланаççĕ.

**– Чăн та, чăваш чĕлхипе е халăх пуласлăхĕпе çыхăннă саккунсене сÿтсе явнă чухне ПК ларăвĕ хĕрÿленнине асăрхама пулать. Уйрăмах мĕнпе çыхăннă-ха çакă?**

– Нумайăшне чăваш чĕлхине пĕлесси пачах кирлĕ япала мар, ăна вĕренесшĕн те мар. Ман шутпа, унашкал лару-тăру килĕшÿсĕр, мĕншĕн тесен чăвашсем те хисепе тивĕçлĕ çынсемех. Чĕлхе вĕренесси вара йывăр ĕç мар. Калăпăр, пирĕн ачасем Турцире 1–2 уйăх çеç пурăнаççĕ, вĕсен чĕлхине аванах вĕренсе килеççĕ. Апла тăк – майсем пур.

**– Пире çакашкал ăнланма «васкаманни» мĕнрен килет?**

– Ытларах хамăртан килет тесе шутлатăп. Пирĕн тивĕçлĕ мăнаçлăх та çук. Мĕншĕн? Пире тăван халăхăмăрăн историне вĕренме тата вĕрентме чарнă. Айван халăх пек кăтартнă. Çав вăхăтрах пирĕн истори питĕ пуян та пысăк иккен... Тен, ырăссеннинчен те пуянрах. Мăнаçлăх валли çеç сăлтав пур.

**– Ĕç тăвакан влаç тата саккун йышăнакан влаç пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленине курас килет. Вĕсем вара хăш чухне пĕр чĕлхе тупаймаççĕ...**

– Кунпа эпĕ те килĕшетĕп: пурте республика халăхĕшĕн ĕçлетпĕр-çке. Пĕр енчен, влаçăн икĕ тытăмĕ хутран-ситрен тавлашнăшăн тĕлĕнмелле мар пек. Тепĕр енчен, хăш чухне ытлашши вĕтелсе каятпăр, сăлтавсăр хирĕçетпĕр, политика шавĕ кăларатпăр. Калăпăр, дамба купаласа çул тунине илер. Депутатсем малтан питĕ нумай хирĕç шавларăмăр. Анчах Президента пула хула тирпейленчĕ. Халĕ пурте кăмăллă. Ман шутпа, тавлашуллă пĕтĕм ыйтăва «çавра сĕтел» хушшинче татса памалла. Халăх çине кăларас çук. Пирĕн комитет пуринпе те пĕр чĕлхе тупать. Тĕрлĕ министерствăсемпе ĕçлеме тивет. Тавлашусем пулаççĕ, анчах пĕр-пĕрне кÿренни – çук.

**– Наци ыйтăвĕ...**

– Нацилĕхпе çыхăннă ыйтусем питĕ нумай. Театрсен, ялти культура вучахĕсен, хаçат-журналăн, вĕрентÿ учрежденийĕсен тата ыттисен. Диаспорăпа кирлĕ çыхăну тытасси хăйсене уйрăм пысăк ыйту. Чĕмпĕр, Сарăту, Мари Эл тăрахĕсенче, ытти çĕрте пултăм. Чăвашла калаçаççĕ, юрлаççĕ, ташлаççĕ. Вĕсенче чăваш чунĕ пурăнать. Республика тулашĕнче чăвашлăха тытса пырас тесен ăна республикăра тивĕçлĕ шая хăпартмалла. Ман шутпа, çак ĕçе тимлессине Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ шайĕнчех йĕркелемелле. Калăпăр, Предпринимательствăпа ал ăсталăх министерствине туса хутăмăр-çке. Наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекенни те кирлĕ. Наци ыйтăвĕсем Вĕрентÿпе Пичет тата Культура министерствисене çеç мар, мĕн пур ведомствăна пырса тивеççĕ. Наци кадрĕсене ятарлă программăпа, ачаран хатĕрлемелле. Шкулсем уçмалла, ют çĕр-шывсене вĕренме ямалла.

**– Шкулĕсем нумай-ха пирĕн. Анчах чăвашлăхшăн тухăçлă ĕçлеççĕ-ши?**

– Ыйту çивĕч тăрать. Тимсĕрлĕх, явапсăрлăх куçа тăрăнать. Ĕçлес меслетсем кивелнĕ, чăвашла вĕрентес туртăм пĕчĕк. Калăпăр, шкулсенче чăвашла юрă вĕрентесси йăлана кĕмен. Чĕлхе вĕренме çăмăлрах пулĕччĕ... Республика бюджетĕнчи укçапа музыка училищи тытса тăратпăр. Унтан вĕренсе тухакансем вара яла каясшăн мар. Художество училищинче те лару-тăру çавнашкал. Ку тĕлĕшпе кăçал Культура министерстви ĕçлерĕ. Тен, уссине курăпăр.

**– Раççейре чăвашсем пĕччен мар. Федераци шайĕнче пархатарлă наци политики пулсан сывлама нумай çăмăлрахчĕ ĕнтĕ.**

– Çапла, анчах центрăн наци политики çукрах. Кăна Чечняри вăрçă та кăтартса пачĕ. Анчах вăл та усса каймарĕ. Калăпăр, Патшалăх Канашĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ чăвашла пĕлессипĕлмесси çинчен тавлашма тивет... Прокурор протест çырать-çке, суд ăна тивĕçтерет. Çавăнпа хамăра шанмалли çеç юлать.

**– Н.В. Федоров Президент наци ыйтăвĕсене татса пама пулăшать-и?**

– Н.В. Федоров Чăваш Республикине тĕнчене илсе тухрĕ темелле. Çавăнпа ăна тав тумалла. Питĕ ăслă. Юрист пулни те Президент ĕçенче пулăшать ĕнтĕ. Республика экономикине хăпартма нумай вăй хучĕ. **Çапах эпĕ ăна наци ыйтăвĕсемпе лайăхрах канашçă суйласа илме сĕннĕ пулăттăм. Калăпăр, Г.Н. Волков академик – Чăваш Республикин хиселлĕ гражданинĕ – пек ăслă çынна. Вара, тен, ку тĕлĕшпе ĕçсем ăнăçлăрах кайнă пулĕччĕç.**

**– Раççей паспортĕнче нацилĕхе пĕлтерни сирĕн шутпа кирлĕ-и е кирлĕ мар-и?**

– Ман шутпа, кирлех. Енчен те ăна нихçан та кăтартман пулсан... Тепĕр енчен, нацилĕхе мĕншĕн пытармалла-ха? Эпир федерацире, кашни хăйĕн çĕрĕ çинче пурăннине пурте пĕлеççĕ.

**– Парламент комитечĕн пуçлăхĕ пулнисĕр пуçне эсир пысăк пĕлтерĕшлĕ общество организацийĕн – Чăваш наци конгресĕн – президенчĕ. Унăн обществăри вырăнне мĕнре куратăр?**

– Вăл патшалăх ĕçлесе ĕлкĕреймен, анчах халăхшăн питĕ кирлĕ ĕçсене тума пулăшакан, чиновниксене хистекен тытăм пулмалла. Халăхпа пĕр тĕллевлĕ ĕçлемелле.

**– Вăл халĕччен мĕнле ĕçлени тивĕçтеретчĕ-и сире?**

– Хăйĕн ĕçне майĕпен туса пычĕ. Анчах пурнăç улшăнать. ЧНК тĕллевĕсем улшăнмаççĕ пулин те ĕç меслечĕсене çĕнетмелле.

**– Конгресс планĕсем еплерех?**

– Эпир Чăваш Республикин Ăслăлăхпа искусство академийĕн президиумне наука-практика конференцийĕ ирттерес сĕнÿпе тухасшăн. Тепĕр 50 е 100 çултан чăваш халăхне мĕн кĕтет, урăхла каласан, лару-тăру çакнашкалах начар аталансан чăваш малашне çĕр çинче юлĕ-и е юлмĕ-и? Ку ыйтăва тĕпчемеллех. Унта Патшалăх Канашне, Правительствăна явăçтарасшăн. Академи мĕн калĕ – малашне çавна тĕпе хурса ĕçлĕпĕр. Хальхи тапхăрта Раççейри республика-облаçсенче тата НППРи (СНГри) диаспорăсенче Чăваш Ен элчисене палăртас ĕçе малалла тăватпăр. Нумай пулмасть Самарта, Чĕмпĕрте хамăрăн элчĕсене çирĕплетрĕмĕр.

**– Чăваша политикăна кĕрсе кайни кирлех-ши?**

– Паллах, кирлĕ. Политикăран ниепле те айккинче тăраймастăн. Унсăр пуçне хамăра тÿррĕн пырса тивекен ыйтусене хăмăрсăр пуçне никам та татса параймасть. Чăвашлăх тата чĕлхе çинчен сăмах пырать. Г.Н. Волков академик шухăшне илсе кăтартас килет. Çын хăйĕн ашшĕ-амăшĕн чĕлхине пĕлмесен нихăçан та питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ, талантлă çын пулаймасть тенĕччĕ вăл. Уйрăмах аслă пĕлÿ заведенийĕсенче вĕренекенсен, унтан вĕренсе тухнисен яваплă пулмалла.

**– Эсир ватă çын мар, апла, тĕслĕх вырăнне, сирĕн ĕç-хĕлĕре асăнма пулать. Кăштах хăвăрăн кун-çулăрпа палаштарсамăр.**

– Эпĕ 1956 çулта чÿк уйăхĕн 28-мĕшĕсенче çуралнă. Тăван ялăм – Етĕрне районĕнчи Анат Явăш ялĕ. Çамрăк чухне повеç-калав çырас тесе тăрмашнă. Хучашри вăтам шкул хыççăн Шупашкара килтĕм, печатнике ĕçе вырнаçрăм. Çар хыççăн заводра ĕçлерĕм, унтан уни-

верситета, историпе филологи факультетне вĕренме кĕтĕм. 4 çул хушши – студканаш председателĕ, виçĕ çул студотряд ертӳçи пулса тĕрлĕ çĕрте ĕçленĕ. Сăмах май, манпа пĕрле пĕрремĕш çул – В. Туркай, иккĕмĕшпе виççĕмĕш çул – А. Смолин поэтсем комиссар пулнă. Университетра пирĕн стройотряд пĕрремĕш вырăнсене йышăннă. Кайран ВЛКСМ Етĕрне райкомĕн пайне ертсе пынă. Ун хыççăн «Коммунизм ялавне» илчĕç. Унта тата «Хыпар» хаçатра 11 çул ĕçленĕ.

**– Хальхи ĕçӳпе çемйĕр кăмăллă-и?**

– Чăтаççĕ. Вĕсем Етĕрнерех пурăнаççе. Икĕ ача. Асли наци гимназийĕнче вĕренет. Киле эрне вĕçĕнче çӳретĕп.

Валерий СОРОКИН калаçнă.
*«Хыпар», 25.12.1997, 257№.*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРЕЗИДЕНЧĔН НИКОЛАЙ ФЕДОРОВĂН САЛАМĔ

Хаклă тăванăмсем! Аякри çывăх ентешсем! Чăваш Ен тулашĕнчи йăхташăмăрсем валли ятарлă кăларăм [«Чăваш тĕнчи»] тухма пуçланине чунтан ырлатăп. Пысăк та яваплă ĕçе «Хыпар» хаçат редакцийĕ пуçарни ытахальтен мар. «Хыпар» пуçлакан ĕççем ăнăçлă пулса пынине пурте пĕлеççĕ-тĕр.

Чăвашлăх вăл чи малтанрах – халăхăмăршăн, унăн пуласлăхĕшĕн тăрăшни. Пĕр-пĕрин вăй-хăватне туйса тăни темрен те хаклă. Çавăнпа пирĕн măн асаттесен авалтан килекен Аслă ниме йăли ламран лама куçса пырать, пире яланах пĕрле пулса хистет.

Пирĕн чĕлхе, йăла-йĕрке, ташă-юрă эпир чи авалхи халăхсенчен пĕри пулнине çирĕплетеççĕ. Тĕрлĕ çĕрте пурăнакан тăванăмăрсем хăйсен чи лайăх енĕсемпе – тараватлăхĕпе, сăпайлăхĕпе, ĕçченлĕхĕпе – сыхланса-упранса юлнă. Чăваш Енĕн «картинчен» тухса инçете-инçете сарăлнă, тĕнче тăрăх сапаланнă йăхташăмăрсене пĕр чăмăра пĕрлештерекенĕ, тăванлăх туйăмне çĕнĕ хăватпа аталантарса яма пулăшаканĕ çак хаçат пуласса шанатăп.

«Ырăпа ырă тĕл пулсан яланах ырă пулать», – тенĕ ватăсем. Çапла ырă туйăмпа пуçăннă ĕçре пурне те вăрăм та тулăх кун-çул сунатăп.

1998, кăрлач, 30.

## «ХЫПАР» ХАÇАТĂН ТĔП РЕДАКТОРĔН АЛЕКСЕЙ ЛЕОНТЬЕВĂН САЛАМĔ

Кăрлач «хыпарçăсемшĕн» – сăваплă уйăх. Çĕнĕ çулăн пуçламăшĕ хăех малаша шанчăкпа пăхма, палăртса хунă тĕллевсене пурнăçа кĕртме хистет. Çак шухăшпах мал ĕмĕтлĕ чăваш Николай Васильевич Никольский 1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕсенче чăвашсен пĕрремĕш хаçатне «Хыпара» кăларма пуçланă. «Хыпар» хаçат редакцийĕ, 90 çул иртсен, 1996 çулхи кăрлачăн 20-мĕшĕнче, Николай Васильевича асăнса, унран пил илсе, «Çамрăксен хаçачĕн» пĕрремĕш номерне кăларчĕ. Паян тивĕçлипех мăнаçланатпăр: «Хыпарпа» «Çамрăксен хаçачĕ» чăваш каларăмĕсен рейтингĕнче – чи малта. Иртнĕ çул чăвашла пăлмен йăхташăмăрсемпе ытти наци çыннисем валли «Хыпар» на русском–Дайджест» хаçат тухма тытăнчĕ.

«Хыпар» «варĕнче» тата икĕ хаçат «ӳтленсе» аталанать: «Чăваш хĕрарамĕ» тата «Хӳтлĕх». Çывăх вăхăтрах «Чăваш хĕрарăмне» республикăри хаçат-журнал каталогне кĕртетпĕр, уйрăммăн çырăнтарма пуçлатпăр.

Паян вара, хисеплĕ вулаканăмăрсем, унччепех тĕв туса хунă тепĕр тĕллевемĕре чăна кăларатпăр. Сирĕн аллăрта – «Хыпарăн» çĕнĕ хаçачĕ. Чăваш тĕнчи анлă, ăçта кăна сапаланса вырнаçман-ши йăхташăмăрсем! Вĕсем чылайранпа ĕнтĕ пĕр-пĕрин çинчен хыпарлакан пичет кăларăмĕ кирли пирки евитлеççĕ. Николай Федоров Президент ЧНК 3-мĕш Аслă пухавĕ умĕн диаспора делегацийĕсен ертӳçисемпе тата чăваш интеллигенцийĕн представителĕсемпе ирттернĕ тĕл пулура тĕрлĕ çĕрте пурăнакан чăвашсем валли ятарлă хаçат кăларас шухăша ырларĕ, пархатарлă çак тивĕçе «Хыпар» пурнăçласса шаннине пĕлтерчĕ. Президент паян та хăйĕн саламĕнче çакна çирĕплетет.

Мĕнех, никĕс ятăмăр. 1999 çулхи кăрлачран вара, чăваш хутлăхĕсем пулăшса пырсан (чи малтанах – хаçата çырăнса илсе, материалсем ярса тăрса), çĕнĕ хаçат хăй тĕллĕн тухса тăма тытăнĕ. Паллах, «Хыпар» çемйинче.

Хальлĕхе хаçата «Чăваш тĕнчи» ят патăмăр. Тен, хисеплĕ вулаканăмăрсем, эсир лайăхрах ят сĕнетĕр? Тархасшăн, çырса пĕлтерĕр. Чи ăнăçлă ят сĕнекен вулакана 1998 çулăн II çурринче илсе тăма «Хыпарпа» «Çамрăксен хаçатне» çырăнса паратпăр.

*«Чăваш тĕнчи», 31.01.1998, 1№ //Хыпар», 31.01.1998, 20–21№.*

## ЧĂВАШ ДИАСПОРИ ЙĔРКЕЛЕННĔ ТАПХĂРСЕМПЕ СĂЛТАВСЕМ

*Хальхи вăхăтра республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсен пысăк пайĕ тĕрлĕ вăхăтра, тĕрлĕ сăлтава пула Чăваш Ен территорийĕнчен куçса кайнă. Çав вăхăтрах Тутарстанра (Кама леш еиче) тата Вăтам Атăл хĕррипе вырнаçнă ытти вырăнсенче пурăнакан чăвашсен пĕчĕк мар пайĕ çак тăрăхри тĕп халăхсем шутланаççĕ, урăхла каласан, вĕсем – Атăлçи Пăлхар пĕрлĕхĕн тăхăмĕсем.*

Çавăн пекех çакă та паллă: Атăл леш енчи тата Урал тăрăхĕнчи ентешсен чи çывăх тăванĕсем Хусан çывăхĕнчи чăвашсем, XIV–XVI ĕмĕрсенче Атăлăн сулахай енче пăлхар-чăваш халăхĕ йышлă пурăннă тăрăхрисем, пулнă. XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче чăвашсем каялла куçса килме пуçлаççĕ: пĕрисем Атăлăн сылтăм енне (Чăваш Енĕн кăнтăр тата кантăр-хĕвел тухăç районĕсене), теприсем – Кама леш енĕн тата Урал тăрăхĕн районĕсене.

Паян иртнĕ ĕмĕрсенче чăвашсем çĕр-шывăн тĕрлĕ районĕсене мĕн чухлĕ куçса кайнин чăн шайлашу виçине палăртма йывăр. Ревизисемпе перепиçсен материалĕсен кăтартăвĕсене тĕпе хурса шутланă тăрăх – XVII ĕмĕр пуçламăшĕнчен паянхи кун тарăн урăх вырăна пурăнма каякан ентешсенн йышĕ пысăкланса пынă. Енчен те 1719–1723 çулсенче хальхи Чăваш Ен тулашĕнче пĕтĕм чăвашăн 11 проценчĕ пурăннă пулсан, 1795 çулта – 36,6 процент, 1989 çулта вара – 50,8 процент. Çав вăхăтра Чăваш Енре юлашки икĕ ĕмĕр хушшинче тĕп халăх йышĕ ун тулашĕнчи ентешсенчен икĕ хут ерипенрех ӳснĕ.

Истори упраса хăварнă кăтартусем тăрăх – революциччен хальхи Чăваш Ен территорийĕнчи чăваш хресченĕсем ытти регионсене пурăнма куçасси темиçе тапхăрпа иртнĕ. Малтанхи вăхăтра (XVII–XVIII ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурри) чăвашсене тата регионти ытти халăхсене Урал тăрăхне, Çĕпĕре, Атăлăн кăнтăр тата кăнтăр-хĕвел тухăç районĕсене куçарасси патшалăх политикипе килӳшуллĕн пулса иртнĕ. Çĕнĕ, пушă вырăнсене йышăнмалла пулнă. XVIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çуррипе XIX ĕмĕрте вара хресченсем çĕнĕ вырăнсене хăйсем тĕллĕн туха-туха кайнă. Чăвашсем XVII–XVIII ĕмĕрсенче, уйрăмах XVIII ĕмĕрĕн 20–60-мĕш çулĕсенче, тăван çĕр-шывĕнчен тарнин тĕп сăлтавĕ хăйсен авалхи тĕнĕнчен уйрăлас мар тени пулнă. XVIII ĕмĕр çурринчен вара çĕр сахалли тата феодалсен пусмăрлăхĕ вăйланни инçе çула йыхăрнă.

Çĕнĕ вырăнта ĕмĕрсем хушшинче паянхи чăваш диаспорин географийĕ тата этнокультури йĕркеленнĕ. Унăн социаллă пурнăçпа экономика тата историпе культура сăлтавĕсемпе тапхăрĕсенчен хăшне-пĕрне çакăнта асăнса хăварас килет. Çав вăхăтрах тата ятарлă тĕпчевсем кĕтекен проблемăсене те палăртса хăварасшăн.

**1.** Чăваш Ен территорийĕнчи чăваш хресченĕсем XVIII ĕмĕр варринче хĕвел тухăç тата кăнтăр-хĕвел тухăç енне тухса кайнин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри çĕр сахалли терĕмĕр.

**2.** Хальхи Самар, Оренбург тата Саратов облаçĕсенчи чăвашсен тăхăмĕсен пĕчĕк мар пайĕ XVI ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчен пуçласа XVIII ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурриччен çĕнĕ çĕрсене лекнин салтавĕ – вĕсене ку тăрăхра çирĕплетнĕ сыхлав линине тунă çĕре хутшăнтарни.

**3.** Разинпа (XVII ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурри) Пугачев (XVIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурри) ертсе пынă вăрçăсене хутшăннă чăвашсенчен чылайăшĕ ют вырăнсене, уйрăмах Урал тăрăхĕпе Урал леш енне, тарнă.

**1.** XVII–XVIII ĕмĕрсенче тĕрлĕ тивĕçсене – çĕр, лава çÿрес ĕç, çул-йĕр, кĕпер тăвас тата ыттисене те – пурнăçлама тивнипе хăш-пĕр ентешсен Чăваш тăрăхĕпе сывпуллашма тивнĕ.

**2.** 1705 çултан пуçласа чăваш каччисене çар службине илме пуçланă. Тепĕр чухне отставкăна тухнисене те çар çыннисем пурăнакан вырăнсене хăваланă.

**3.** XVIII ĕмĕр варринчен тытăнса чăвашсем Атăл тăрăх бурлакра çÿреме пуçланă. Каярах вĕсенчен чылайăшĕ Атал тăрăхĕнчи ялсемпе хуласенче ĕмĕрлĕхех пурăнма юлнă.

**4.** XVIII ĕмĕр варринелле чăваш хресченĕсем Урал тăрăхĕнчи металлурги завочĕсене «куç хывма» пуçланă.

**5.** Уралăн кăнтăр пайне куçса кайнă ентешсен хăш-пĕр ушкăнĕсем XIX ĕмĕр варринче Урал казакĕсен йышне кĕме тытăннă.

**6.** XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи Столыпин реформин тапхăрĕнче чăваш хресченĕсем Çĕпĕре тата Раççейĕн Ази районĕсене куçса кайнă.

**1.** Выçлăх çулĕсенче (XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче çеç 5– 6 хут тыр-пулсăр çул пулнă) Чăваш Ен территорийĕнчен хĕвел тухăç тата кăнтăр-хĕвел тухăç регионĕсене миграци хăвăртланнă.

**2.** XX ĕмĕр пуçламăшĕнче сахал çĕрлĕ тата нимсĕр юлнă чăвашсем ырлăх шыраса инçетри Донбасс шахтисене, Бакури – нефть, Лена юхан шывĕ тăрăхĕнчи ылтăн кăларакан вырăнсене çитнĕ.

**3.** Пĕрремĕш тĕнче тата граждан вăрçисем чăвашсен çамрăк каччисене çар ĕçĕсен анлă территорийĕ тăрăх сапаланă.

**4.** Чăвашсен хăш-пĕр пайĕ, уйрăмах Саратов кĕпĕрнинчисем, XIX ĕмĕр варринче ислам тĕнĕ йышăнса Турцие тухса кайнă.

**5.** Чăвашсем Çĕпĕрте XVI ĕмĕр вĕçĕнчех тĕл пулни пирки паллă. Çапах та вĕсем пысăк йышпа Хĕвел анăç Çĕпĕре Çĕпĕр комитечĕ пуçарнипе килме пуçланă. Çак тапхăр XIX ĕмĕр вĕçĕпе XX ĕмĕр пуçламăшне тивет.

**6.** 1920 çулсенче Центрти органсен хушăвĕсемпе килĕшÿллĕн чăвашсен пысăк пайĕ Хĕвел анăç тата Хĕвел тухăç Çĕпĕр регионĕсене çитет. Сăмахран, 1921 çулта çеç Чăваш Енрен Çĕпĕре 18 пин çынна куçарса кайнă.

**7.** Революци хыççăнхи малтанхи çулсенче чăвашсем хайсен тăван çĕр-шывĕпе уйрăлни 1921 çулхи типĕ çанталăкпа, Атăл тăрăхĕнчи выçлăхпа çыхăннă. Тăлăха юлнă пин-пин ачана Мускава, ун тăрăхне ăсатнă. Хресченсем çемйи-çемйипе Çĕпĕрелле çул тытнă.

**8.** Совет влаçĕн çулĕсенче патшалăх планĕпе килĕшÿллĕн çамрăксенчен тăракан ушкăнсене çут çанталăк пуянлăхĕсене алла илме инçе çула ăсатнă. Чăваш каччисемпе хĕрĕсем Урал леш енне, Хĕвел тухăç тата Хĕвел анăç Çĕпĕре, Инçет Хĕвел тухăçне çитсе тухнă. 1939 çулта вырăнсенче куçса каякансен ятарлă уйрăмĕсем йĕркеленеççĕ. Вăрçă çулĕсенче çеç 14 пин чăваш çĕнĕ вырăнта пурăнма пуçланă.

**9.** 1930–1950 çулсенче чăваш хресченĕсене йышĕ-йышĕпех кулак тесе Çĕпĕре ăсатнă.

**10.** Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче вун-вун пин чăваша, ытти халăх çыннисене те çав шутрах, фронта тата тĕрлĕ вырăнти çар завочĕсене ăсатнă. Хăшĕсем вăрçа чарăнсан та çĕнĕ вырăнтах ĕçлеме юлнă.

**11.** Вăрçă хыççăн, уйрăмах 1950 çулсенче, чăвашсем хĕвел анăçнелле те, хĕвел тухăçнелле те саланма пуçланă. Çакă ытларах вăрçа пула инкек тÿснĕ районсене çĕклессипе, çавăн пекех Раççейĕн кăнтăр-хĕвел тухăç регионĕсенчи тата Казахстанри уçман çеремсене алла илессипе çыхăннă.

**12.** 1960 çулсен вĕçĕнче тата 1970 çулсенче – Тольятти, кăшт каярах Çыр Чаллă (Набережные Челны) хулисенче автомобиль завочĕсем тăвассипе çыхăннă стройкăсене Чăваш Енри çамрăксен, унран та ытларах Самар, Ульяновск облаçĕсенчи, Пушкăртстанпа Тутарстанри чăваш каччисемпе хĕрĕсем хутшăннă.

13. Пултаруллă ентешсем çулленех çĕр-шывăн тĕрлĕ хулисене, уйрăмах Мускава, Питĕре, Хусана вĕренме туха-туха каяççĕ. Иккĕмĕшĕнчен, Шупашкарта аслă вĕренÿ заведенийĕ е техникум пĕтернисене Совет Союзĕн тĕрлĕ кĕтесне направленипе ĕçлеме янă.

14. 1970 – 980 çулсенче Тюмень облаçĕнче газпа, нефтьпе пуян районсене алла илме пуçланă. Унта ытларах Пушкăртстанпа Тутарстанра тата Самар облаçĕнче пурăнакан чăвашсем куçа-куçа кайнă. Çакна та палăртма интереслĕ. 70–80-мĕш çулсенче ентешсем çĕнĕ вырăнсене, халĕччен «йăлара» пулманнисене, куç хывнă. Çав вăхăтра Атăл тăрăхĕнчи тата Уралти чăвашсен йышĕ чакман, хушăнма пуçланă: Раççейĕн Тĕп пайĕнче – 75 процент таран, Инçет Хĕвел тухăçĕнче – 46 процент чата Хĕвел анăç Çĕпĕрте 25 процент чухлĕ.

Виталий ИВАНОВ, истори наукисен кандидачĕ.
*«Чăваш тĕнчи», 31.01.1998, 1№//«Хыпар», 31.01.1998, 20–21№.*

## ÇИРĔМ ПĔРМĔШ ĔМĔРТЕ МĔНЛЕРЕХ ПУЛĔ?

*Ку пĕчек статьяна ЧНК йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн кăçал иртterме палăртнă «Çитес вунă çуллăхра чăваш халăхне мĕн кĕтет?» ăслăлăх конференцийĕ умĕн сÿту-яву пуçлас тĕллевпе çырнă.*

«Хыпар» хаçатра (1998, кăрлач, 24) пичетленсе тухнă пĕр статьяра эпир хальхи чăваш чĕлхин шалти вай-хăватне тата тулаш илемлĕхĕпе çепĕçлĕхне, ăслăлăх чĕлхипе каласан, социаллă функцисен тĕрлĕлĕхне тупса палăртас тесен, хурăнташ чĕлхесенчен чи аталаннипе, чи анлă функциллĕ шутланаканнипе танлаштарни вырăнлă пулни çинчен çырнăччĕ. Кунашкал чĕлхе вăл, паллах, хальхи турккă чĕлхи пулса тăрать, мĕншĕн тесен çак чĕлхене паянхи Турцире пур сферăра та питĕ тухăçлă ĕçлеттереççĕ. Тăван чĕлхемĕр сулмаклă аталантăр тесен вара тутлă çăкăр пĕçернĕ чухне чустине мĕн тери аван çăрăпăр, çавăн чухлĕ вăл техĕмлĕ пулĕ текен принциппа усă курма тивет-тĕр. Чăннипех те хальхи вăхăтра чĕлхемĕре пур енлĕн «çăрни» кирлĕ, урăхла пек туйăнакан, анчах тăван сăмахсене, май çитнĕ тарăн чăваш общество пурнăçĕн пур сферине те кĕртмелле. Уйрăмах – патшалăх ĕçĕсенче, ăслăлăхпа вĕрентÿре, производстввара чĕлхемĕр тивĕçлĕ вырăн тупмалла.

Хăшĕ-пĕри чĕлхене «çăрмалла» тенине питĕ ансăр пĕлтерĕшпе ăнланнă. Эпир ăна кавычкăра ахальтен мар илтĕмĕр, чĕлхене ĕçлеттермелле, хутшăнура куллен усă курмалла тенине пĕлтерет ĕнтĕ вăл. Чĕлхе тасалăхĕшĕн тăрăшакансене, литература нормипе çеç калаçмалла текенсене çакнашкал хуравлама пулать. Паллах, вĕсен ĕçĕ пархатарлă, кирек кама та нормăланнă литература чĕлхипе калаçма пултарни чыс кÿрет. Анчах та ĕмĕрсем тăршшĕпе общество функцийĕсене кулленхи калаçу шайĕнче çеç пурнăçласа пынă чĕлхесемшĕн туххăмăнах нормăланă чĕлхе çине куçасси питĕ кăткăс пулăм.

Тата çакă та пур. Кирек мĕнле чĕлхене те нормăлама тытăнсан вăл темĕнле типĕ, хытса ларнă чĕлхе пулса тăрать. Чĕрĕ чĕлхе вăл яланах нормăланă чĕлхерен пуянрах, сĕткенлĕрех. Пĕлетпĕр ĕнтĕ: литература чĕлхи шкул вĕрентĕвĕн чĕлхи шутланать. Совет влаçĕ вăхăтĕнче пурте шкулта вĕреннине шута илсен, пурте литература чĕлхипе калаçмалла пек. Çапах та кунта чăнлăхран тарас марччĕ. Сăмахран, шкулта çичĕ класс пĕтерсе хăйĕн тăван ялĕнчех пурăнакан çын, пĕр иккĕленмесерех калама пулать, хăйĕн вырăнти калаçу чĕлхипех калаçать. Унăн чĕлхи нормăланă литература чĕлхинчен чылай пуянрах та пулма пултарать. Чĕлхеçĕсем сăнанă тăрăх – çавнашкал çынсем чĕрĕ чĕлхе юхăмне, çут çанталăкне нормăланă литература чĕлхипе калаçаканнинчен чылай аванрах сиссе-туйса пыраççĕ. Манăн кукамай, тăхăр вун виçĕ çула кайнăскер, ют чĕлхе сăмахĕсене пачах та хушăнтармасăр, хăйĕн хуйхи-нуши пирки чăвашла шăкăл-шăкăл çеç каласа пама пултарать.

Тата тепĕр уйрăмлăха манмалла мар. Çĕр чăмăрĕ çинчи кирек хăш чĕлхен те тĕп функцийĕ – çынсене ăнланса пĕр-пĕринпе хутшăнма

май туса парасси. Тӗрлӗ ҫӗрте пурӑнакан, тӗрлӗ диалектпа калаҫакан чӑвашсем, турра шӗкӗр, пӗр-пӗрне аванах ӑнланаҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе эпир ҫармӑссенчен (туҫи тата ҫаранҫи марисем) тата мӑкшӑ-ирҫесенчен уйрӑлса тӑратпӑр. Пӗр кӑкран ӳтленсе тухнӑ, ӗмӗртен ҫума-ҫумӑн пурӑнакан, анчах икӗ тӗрлӗ литература чӗлхипе усӑ куракан ҫак асӑннӑ халӑхсем пӗр-пӗринпе хутшӑнма кӑткӑсланаҫҫӗ. Туҫи марисем ҫаранҫисемпе, мӑкшӑсем ирҫесемпе калаҫма пултараймаҫҫӗ.

Темиҫе ӗмӗр хушши пуслӑх пек пусса тӑракан вырӑс чӗлхи хӑйӗн ӗҫне турӗ-турех. Хулара, поселокра, район центрӗнче пурӑнакан чӑваш чӑвашла калаҫнӑ чухне вырӑсла-чӑвашла-вырӑсла «ҫӑрса» пуплет. Ку пулӑма, пӗтӗмӗшле илсен, сивлемелле ӗнтӗ. Анчах, пирӗн шутпа, унӑн та сӑлтавӗсем пур. 60-мӗш ҫулсенчен пуҫласа пуҫламӑш классенче ҫеҫ чӑвашла, каярах вара пур предмета та вырӑсла вӗреннӗскер, ҫӗнӗ чӑваш чӑннипех те ҫӗнӗ вырӑс пулма пуҫларӗ.

Радио-телевидени, хаҫат-журнал витӗмӗ те питӗ пысӑк, мӗншӗн тесен чӑвашла программӑсен сехечӗ ҫав тери сахал. Сӑпкара выртакан пепке амӑшӗн кӑмӑллӑ сӑмахӗсене тӑнланисӗр пуҫне сахетшер радиопа тата телевиденипе паракан вырӑс сӑмахӗсене хӑлхана чикет. Хӑй сисмесӗрех тӑван чӗлхен шухӑшлавне вырӑс чӗлхиннипе улӑштарма, пӑтраштарма пуҫлать. Ҫакнашкал лару-тӑрура чӑваш ҫынни «вырӑсланнинчен» нимӗн телӗнмелли те ҫук. Паллах, чӑваш ялӗнче е ҫемйинче ҫитӗннӗ ҫын вырӑсла-чӑвашла хутӑштарса калаҫнинче хӑйӗнчен килекен сӑлтав та пур. Хӑй вӑхӑтӗнче чӑваш элтеперӗ Н.В. Федоров чӑвашла мӗнлерех «чаплӑ» калаҫнине пурте ас тӑваҫҫӗ пулӗ тетӗп. Анчах юлашки ҫулсенче Президент, хӑй тӑрӑшнипе ӗнтӗ, чӑвашла шеп калаҫма тытӑннине те пурте курса тӑратпӑр. Апла пулсан – чӑвашла таса калаҫма пултарасси чӑваш ҫыннинчен хӑйӗнченех нумай килет.

«Чӑваш чӗлхин пуласлӑхе пур-и?» текен ыйтӑва, пирӗн шутпа, пӗр иккӗленмесерех «Пур!» тесе хуравлӗҫ. Икӗ миллионлӑ чӑваш халӑхӗ хӑйӗн тӑван чӗлхине манмасса, упраса пырса аталантарасса шанас килет. Шанчӑка ҫухатманнисем телейлӗ теҫҫӗ.

Василий АНДРЕЕВ,
ЧПУ доценчӗ, ЧНК Мӑн Канашӗн членӗ.
*«Хыпар», 13.02.1998, 31№.*

## ИРӖКСӖРЛЕМЕННИН, ПУСМӐРЛАМАННИН ВӐЙӖ

*Тӗнчере пӗтӗмпе 5 пине яхӑн халӑх. ПНОра (ООНра) 200 яхӑн ҫӗр-шыв (патшалӑх) ҫеҫ тӑрать. Пӗтӗм тӗнчери халӗ ӗҫлекен организацисене йышӑнман чылай халӑх тӑван ҫӗр-шывсӑр, пӗрлӗхлӗ культурӑсӑр е хӑйсен шӑпине хӑйсем татса памалли майсемсӗр тӑрса юлма пултарать. Ҫав халӑхсеннен чылайӑшӗ этем правине пӑснине, геноцида пула инкек тӳсет.*

*Тӗнчене тухайман нацисемпе халӑхсен организацийӗ (ТТНХО) халӗччен пулнӑ организацисенче тӑман халӑхсен интересӗсене хӳтӗлес тӗллев тытать. ТТНХОн пӗрремӗш хатӗрленӳ съезчӗ Эстонири Тарту хулинче 1990 ҫулхи авӑн уйӑхӗнче иртнӗ, йӗркеленӳ Ассамблейи – унта хутшӑнакан халӑхсен пӗрремӗш пӗрлехи пухӑвӗ – 1991 ҫулхи нарӑсра Гаагӑра (Нидерланд) пухӑннӑ.*

ТТНХО вӑйпа усӑ курмалла мар меслетсене шанать, ҫак халӑхсене вӗсен ыйтӑвӗсене саккунлӑ форумсенче ҫӗклеме тата вӑйпа уса курмасӑр татса пама пулӑшать. Унсӑр пуҫне, ТТНХО кӗрешӳре хӑйсене пӗччен туякан халӑхсене те манмасть. Организацире хальхи вӑхӑтра 50 член шутланать. Кунта оккупациленӗ ҫӗр-шывсем, федераци йышӗнчи халӑхсем, пӗчӗк е пысӑк йышлӑ этнос тата культура ушкӑнӗсем тӑраҫҫӗ. Ҫав шутра – камбоджиецсем, тибетсем, Хӗвел тухӑҫ Тиморта пурӑнакансем, Иракри тӗрӗксем, бурятсем, черкессем, Саха (Якути), Баяти патшалӑхӗсен ҫыннисем, огони, скани, санджак, аче, Австрали аборигенӗсем, уйгурсем... Членра тӑмалли принципсем пуриншӗн те пӗр: вӑйпа усӑ курса ӗҫлессине хирӗҫлени; ҫын прависем тӗлӗшпе ыйтни, пӗр енне сулӑнманни тата шалти ӗҫсене хутшӑнманни.

**ТТНХОра чӑваш халӑхне ЧНК урлӑ пӗлеҫҫӗ. Вӑл 1993 ҫулхи кӑрлачра кӗнӗ унта. Унӑн III Тӗп Ассамблейин ӗҫне ЧНКн ун чухнехи президенчӗ А.П. Хусанкай хутшӑннӑ, сӑмах тухса каланӑ.** Иртнӗ ҫулхи утӑ уйӑхӗнче Эстонире V Тӗп Ассамблея ӗҫленӗ. Унта пирӗн ентеше, А.П. Хусанкай профессора, Тӗп Ассамблейӑн вице-председательне – ертӳҫӗн ҫумне – суйланӑ. Атнер Петрович нумаях пулмасть Майкопран ТТНХОн регион канашлӑвӗнчен таврӑнчӗ. Ҫак кунсенче вара Женевӑра Тӗп Ассамблейӑн черетсӗр ӗҫӗнче Ассамблейӑн Тӗп секретарьне суйлӗҫ тата ытти ыйтусене татса парӗҫ. Атнер Хусанкайпа пирӗн корреспондент ТТНХОн ӗҫӗ-хӗлӗ, вӑл татса паракан ыйтусем тавра калаҫнӑ.

**– Атнер Петрович, ТТНХОн V Тӗп Ассамблейи иртнӗ ҫул ҫеҫ ӗҫленӗччӗ. Кӑҫалхи пуш уйӑхӗн 15-мӗшӗсенче вара каллех пухӑнать. V Тӗп Ассамблея кирлӗ ыйтусене татса параймании-ши тӗп сӑлтавӗ? Тата мӗнпе асра юлчӗ V Тӗп Ассамблея?**

– Унӑн ӗҫне Чаваш делегацийӗ те хутшӑнчӗ. Ыттисемпе танлаштарсан, иртнӗ Ассамблея йышӗпе чи пысӑккипе (50 членран 41-шӗ хутшӑннӑ) палӑрса тӑчӗ. Унччченхи ССР Союзӗ пулнӑ ҫӗр-шыври 17 членран 15-шӗ пынӑ. Кун йӗркинчи хӑш-пӗр тӗп ыйтусенчен ҫаксене палӑртма пулать: ҫӗнӗ членсене официаллӑ майпа йышӑнасси; Тӗп Ассамблейӑн ҫӗнӗ председателӗпе унӑн вице-председателӗсене, Тӗп секретарьпе Ертсе пыракан комитет президентне суйлассси; секретариат ӗҫӗнчи улшӑнусем...

**– Шӑпах ҫакӑнта, Отепяэ хулинчс, сире Тӗп Ассамблейӑн вице-председательне суйланӑ. Сирӗн ытти ӗҫтешӗрсен ячӗсене пӗлес килет.**

– Тӗп Ассамблейӑн председателӗ – Сейф Шариф Хамад господин (Занзибар). Горан Ханссон (Скания) – иккӗмӗш вице-председатель. Икӗ тулли срок ӗҫленӗ хыҫҫӑн Майкл ван Валт ван Прааг доктор Тӗп секретарь должноҫӗнчен пӑрӑнчӗ. Тӗп Ассамблея ҫӗннине суйлаймарӗ. Ҫавӑнпа ку ыйтупа кӑҫалхи пуш уйӑхӗн 15-мӗшӗсенче Женевӑра Тӗп Ассамблея ҫӗнӗрен пухӑнать. ТТНХОн Ертсе пыракан комитетне Эркин Алптекин (Тухӑҫ Туркестан), Музаффер Арслан (Иракри Туркменистан), Паррис Чанг сенатор (Тайвань), Ахъяд Идигов (Чечня), Теувеж Казаноков (Адыгея Республики), Александр Кирьянен (Инкери), Ледум Митее (Огони) тата ыттисем те суйланнӑ.

Хальхинче Тӗп Ассамблея хӑйне тӗнче шайӗнче ҫирӗп тӑракан организаци пек кӑтартса пачӗ. Унӑн авторитечӗ ӳсет, йышӗ хушӑнать.

**– Юлашки вӑхӑтра хӑш халӑх ҫыннисем ТТНХО членӗ пулса тӑнӑ?**

– Кабинда, кумык тата шан халӑхӗсем.

**– Ӑҫтарах вырнаҫнӑ вӗсем?**

– Кабинда территорийӗ Африкӑри Конго Республикипе унччченхи Заир ҫӗр-шывӗ хушшинче. 1975 ҫултанпа Ангола ҫарӗсен репрессине тӳсет. Кумыксем Ҫурҫӗр Кавказра тӗп халӑх шутланаҫҫӗ. Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче асӑннӑ халӑха хӑй пурӑннӑ вырӑнсенчен ирӗксӗрлесе куҫарса кайнӑ. Кумыксем хӑйсене этнодемографи репрессийӗнчен хӳтӗлесшӗн, Пӗтӗм тӗнчери пӗрлӗхсемпе ҫыхӑнусем йӗркелесшӗн.

Шан халӑхӗ Хӗвел тухӑҫ Бирмӑпа Ҫурҫӗр Таиланд хушшинче пурӑнать. Шансен хӑйсен чӗлхи, культури. Вӗсен ҫырулӑхӗн историйӗ пирӗн эрӑчченхи 1200 ҫултанпа пырать. Шан патшалӑхне Бирмӑн ҫар вӑйӗсем оккупациленӗ. Шансем мирлӗ пурӑнасшӑн, ҫар диктатури вӑхӑтӗнче инкеке лекнӗ ҫынсене ирӗклӗх парасшӑн.

**– Иртнӗ ҫулхи раштавра Гаагӑра ТТНХОн Ертсе пыракан комитсчӗн ларӑвӗ иртнӗ. Эсир те унӑн ӗҫне хутшӑннӑ терӗмӗр. Мӗнле ыйтусем тӗп вырӑнта тӑчӗҫ?**

– Эпӗ Тӗп Ассамблейӑн вице-председателӗ ҫеҫ мар, суйлав комитечӗн членӗ те. Тӗп ыйтусенчен пӗри ҫак организацин Тӗп секретарьне суйласа хӑварассипе ҫыхӑннӑ. Пилӗк кандидатпа тӗл пулса калаҫрӑмӑр. Вӗсен пултарулӑхне, пӗлӳ, дипломати ханӑхӑвне, чӗлхесене пӗлнине хаклама тиврӗ. Кандидатсен хушшинче Хелен Корбет (Австрали), Д. Бремнер (АПШ), З. Цховребов (Швецире пурӑнакаи осетин-эмигрант), А. Кадиев (Чечнян Европӑри элчи) тата Ст. Бараньи (ҫурма венгр, ҫурма француз).

Ытги ыйтусен шутӗнче финанспа, наци ирӗклӗхӗшӗн кӗрешекенсене преми парассипе ҫыхӑннисене сӳтсе явнӑ. Икӗ ҫул каялла премие Тухӑҫ

Тимор çынни тивĕçнĕччĕ. Кăсăкли: çав çулах вăл Нобель премине те илнĕ. Тепри – Америка сенаторĕ Пелл Клейбори.

**– Майкопри канашлу мĕнпе çыхăннă?**

– Совет Союзĕ пулнă территорири членсем кашни çулах Эстонири Тарту хулине пуçтарăнаççĕ. Гаагăра вара çапла килĕшсе татăлтăмăр: канашлăва тĕрлĕ регионта йĕркелемелле. Майкоп хыççăнхи Пушкăртстанра иртмелле. Çапла туни вырăнти халăхсен ыйтăвĕсене туллин çутатма май парĕ. Хальхинче чечен, абхаз, адыг-черкес халăхĕсен ыйтăвĕ тăчĕ. Черкессем хăйсен халăхĕ енĕпе Раççей империйĕ вăхăтĕнче геноцид пулса иртнĕ тесе йышăнтарасшăн. Çав факта ПНО тарăн çĕкленĕ пулнă. V Тĕп Ассамблейăра та, ун умĕнхи канашлусенче те хускатнăччĕ, йышăнусем те тунăччĕ.

Вĕсен лару-тăрăвĕ тĕпрен илсен çапларах: Кавказ тăрăхĕнче 700 пин черкес пурăнать, 4 миллионĕ – чикĕ леш енче. Кавказ вăрçи пĕтнĕ хыççăн 1874 çулта тухса кайма тивнĕ. Паянхи кун Турцире, Египетра, Çывăх Тухăçра йышлă тымар янă.

**– Тĕрлĕ вырăнта пурăнакан черкессем пĕр-пĕринпе çыхăну тытаяççĕ-и?**

– Вĕсене пĕрлештерекенни – Пĕтĕм тĕнчери черкессен ассоциацийĕ. Унăн пуçлăхĕ РСФСР юстици министрĕ пулнă Ю.Х. Калмыковчĕ. Вăл вилнĕ хыççăн ассоциацие Хаджи-Мурат Хатукаев ертсе пырать. Вăл – Черкес Республикин парламент депутачĕ, наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитет пуçлăхĕ.

Регион канашлăвне çулталăкне пĕрре çеç ирттерни çителĕксĕр, сахалтан та 3 хутчен кая мар йĕркелемелле. Майкопра «Евразипе Кавказ халăхĕсем 3-мĕш пин çуллăх умĕнче» семинар та ăнăçлă ĕçлерĕ.

**– ТТНХО ĕçĕ-хĕлĕн сферисемпе вулакансене паллаштарни интереслĕ пулĕччĕ.**

– ТТНХОна унта хутшăнакансене çак ыйтусем тĕлĕшпе пулăшма туса хунă: ПНОри элчĕлех; дипломати ĕçне вĕрентни; хирĕçĕве сирес тата татса парас пултарулăх; информаци служби тата прессăпа çыхăну тытасси; суйлавсемпе референдумсене сăнаса тăрасси; культурăри йăла-йĕркене упранса юлма тата аталантарма пулăшасси; тавралăха сыхласси...

**– Атнер Петрович, ТТНХО ытти организацисемпе çыхăну тытать-и?**

– Паллах. ПНОпа та. Вăл палăртнă тăрăх – 2004 çулччен тĕп халăхсен вунă çуллăхĕ пырать. Вĕсен прависен декларацийĕн проекчĕпе ĕçлеççĕ. Ăна ПНО шайĕпе йышăнасшăп.

**– Кам вăл – тĕп халăх?**

– Шăпах çакăнта тавлашуллă самантсем тĕл пулаççĕ те. Халăх йышĕ 50 пин пулсан çавсем тĕп халăхсем шутĕнче иккен. Ытларах çурçĕр халăхĕсем, индеецсем пирки калаçу пырать. Вĕсен патшалăх тытăмĕ те, вĕрентӳ, ытти йĕркесем те çук-çке.

**– Çапла пара ТТНХО – ПНОна хирĕç пек çуралнă организаци. Мĕншĕн тесен тĕнче шайĕнче хăйсен кăмăлне, шухăшне палăртма пултарайманнисем кĕреççĕ-çке унта. Эсир мĕн каланă пулăттăр?**

– ПНО халăхсене мар, çĕр-шывсене пĕрлештерет! ПНО тытса пыракан политика – патшалăхсен политики. Тибет патшалăхĕ пулнă. Халĕ – çук, Китай колонийĕ пулса юлнă. Ыйтăва ПНОра татса парайман. Çавăн пекех çакнашкал ыйту уйгурсемпе те сиксе тухнă. Вĕсене ПНО механизмĕпе ниепле те татса пама çук. Патшалăх хăй – ПНО членĕ. Ун пек чухне çав-çав патшалăх хăйĕн шутĕнчи çав-çав халăха пусмăрлать тенине йышăнасшăн мар: Украина – русинсем, Китай – тибет халăхĕ пирки... Раççейре те ТТНХОна патшалăхăн шалти ĕçĕсене пăтратакан организаци пек кураççĕ, хаклаççĕ. Организаци, паллах, ун пек тĕллев тытмасть, халăхсене Раççей тытăмĕнчен кăларасшăн мар. Вĕсен ыйтăвĕсене мирлĕ майсемпе татса пама пулăшасшăн.

**– Женевăра çитес кунсенче ТТНХОн Тĕп секретарьне суйлассипе çыхăннă ыйтусемсĕр пуçне тата хăшĕсене татса пама тивĕ?**

– Унта ертсе пыракан комитет ларăвĕ иртмелле. Каласа хăварам: V Тĕп Ассамблея хыççăн ТТНХО тытăмĕ кăштах улшăнчĕ. Хальхи вăхăтра Эстонире тата АПШра (Вашингтон) икĕ центр пур. АПШри Америка сеначĕпе тата ПНОна çыхăнса ĕçлет. ТТНХОра халăхсен йышĕ нумайланчĕ. Çавна кура Африкăра, Латинла Америкăра, Азире, Лăпкă океан тăрăхĕнче пурăнакансем валли центрсем йĕркелесшĕн.

Пуш уйăхĕн 16-мĕшĕсенче ПНОн Çын прависем çинчен калакан Декларацине йышăннăранпа 50 çул çитет, çавна май унăн Çын прависемпе ĕçлекен комиссийĕ анлă канашлу ирттерет. Çавăнта та хутшăнасшăн.

**– ТТНХОна укçа-тенкĕпе кам пулăшать?**

– Чи малтанах членсем хăйсем парса тăраççĕ. Ытларах – тĕрлĕ фондсем, демократи енĕпе ĕçлекеннисем тата ыттисем те. Скандинави правительствисем (Швеци, Голланди, Дани...) пулăшаççĕ.

**– Пирĕн ЧНК мĕн пама пултарать?**

– Çулталăкра 1000 доллар куçармалла. Шел те, эпир парăмра-ха.

Надежда СМИРНОВА калаçнă.
*«Хыпар», 13.03.1998, 54№.*

## ШУПАШКАРТА – ТУЛАЙ ЧĂВАШĔСЕМ

*Шупашкар ĕнер хаклă хăнасене йышăнчĕ. Питĕ хаклă та кирлĕ хăнасене. Правительство çуртĕнче Чăваш Ен тулашĕнче пурăнакан чăвашсем – предприятисемпе организацисен ертӳçисем, тĕрлĕ çĕрте вйй хуракан ертӳçĕсемпе предпринимательсем пухăнчĕç. Кунта икĕ куна пыракан семинар-канашлу ĕçлеме пуçларĕ. Ăна* ***Чăваш наци конгресĕпе республика Экономика министерстви йĕркеленĕ.***

Канашлăва Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакан, пурнăçра ура çине çирĕп тăнă чăвашсем пухăнчĕç. Географи питĕ анлă – Тутарстанпа Пушкăртстанран, Мускавпа Мускав облаçĕнчен, Санкт-Петербургран, Оренбургпа Оренбург облаçĕнчен, Саратов, Челябинск, Тюмень облаçĕсенчен, Красноярскпа Ульяновскран.

Пухăннисене ЧР Президенчĕ **Николай Федоров** саламларĕ. Ку канашлу хăйсене евĕрлĕ ĕçлĕ тĕл пулу, палăртрĕ Президент хăйĕн сăмахĕнче. Çакăн пек тĕл пулусем республикăна та, Раççейĕн ытти регионĕсене те хамăрăн чăваш- ентешсем урлă экономика тата культура çыхăнăвĕсене сарса пыма пулăшĕç. Пирĕн тĕллев – çак çыхăнусене çирĕплетсе пырасси. Пурнăçĕ çавăн пек килсе тухрĕ, терĕ Николай Васильевич, Союз саланнă, регионсем хушшинче хуçалăх çыхăнăвĕсене Центр урлă йĕркелесе тăрасси арканнă хыççăн пирĕн хамăрăн тӳрĕ çыхăнусем йĕркелеме тивет. Çавăнпа та çак семинар-канашлу татăлнă çыхăнусене тепĕр 5–30 процент чухлĕ йĕркелесе яма пулăшсан та эпир хамăрăн тĕллеве пурнăçланă тесе калама пултарăттăмăр. Экономикăпа культура çыхăнăвĕсем енĕпе хальччен те ĕçленĕ-ха, анчах та ку ĕçе анлăрах туса пымалли майсем татах пур. Çак ĕçе тулай чăвашĕсем те хăйсен тӳпине хывма пултараççĕ.

Президент канашлăва пухăннисене кунта республикăри пысăк предприятисемпе организацисен, министерствăсемпе ведомствăсен представителĕсем хутшăннине, вĕсемпе тӳрремĕнех ĕçлеме май пурине палăртрĕ, Шупашкарта çывăх вăхăтра пысăк мероприятисем, çав шутра Европа Канашĕн пĕрремĕш хут Чăваш Республикин тĕп хулинче ирттерекен ларăвĕ, Чăваш патшалăхлăх кунĕ иртесси çинчен пĕлтерчĕ, çав кунсенче кунта килсе курма чĕнчĕ. Çак икĕ кун хушшинче хăйĕнпе тĕл пулса калаçма кăмăл тăвакансене йышăнма хатĕрри çинчен пĕлтерчĕ, тĕл пулу вăхăтĕнче усăллă ĕçлеме ăнăçу сунчĕ.

Тĕл пулăва малалла ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ **Э. Аблякимов** ертсе пычĕ. Республикăн иртнĕ çулхи итогĕсемпе, Чăваш Ен халăх хуçалăхĕн кăтартăвĕсемпе, республика çурт-йĕр лартас, газификаци ĕçĕсене туса пырас, çул-йĕр тăвас енĕпе тунă çитĕнӳсемпе паллаштарнă май çак тĕл пулу республикăпа ытти регионсем хушшинчи экономика çыханăвĕсем татах та аталанасса шаннине пĕлтерчĕ.

ЧР экономика министрĕ **А. Аксаков** хăнасене Чăваш Республикин экономика вăй-хăвачĕпе, аталанăвăн тĕп çул-йĕрĕсемпе паллаштарчĕ. Чăваш Енре нефть е газ тупман-ха, анчах шырав ĕçĕсем пыраççĕ, çавăнпа та хальлĕхе эпир чи малтанах хамăрăн халăхăн ĕçлес

пултарулăхне шанса тăратпăр. Экономикăна çĕклес ĕçре çакăн пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк, терĕ министр. Тепĕр пуянлăх вăл – халăхăн ăс-хакăл вăй-хăвачĕ. Республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнче ЧПУ филиалĕсене уçнă, вĕсенче специалистсем хатĕрлесси ÿссе пырать. Студентсен йышĕпе эпир виçĕ-тăватă çул каялла хыçалти вырăнсене йышăннă пулсан, халĕ Раççейри вăтам кăтартуран та çÿлерех çĕклентĕмĕр.

Республика экономикине çĕклеме пирĕн майсем пысăк. Вĕсемпе усă курма пĕлмелле. Географи енчен те меллĕ вырăнта вырнаçнă вăл. Республика урлă Раççей пĕлтерĕшлĕ автоçулсем, чукун çул иртеççĕ. Анлă Атăл та юнашарах. Шупашкар аэропортне тĕнче аэропорчĕн статусне пани те çыхăнусене йĕркелесе пырас ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Анатолий Геннадьевич республикăри промышленноç предприятийĕсемпе, вĕсем туса кăларакан тĕп продукципе кĕскен паллаштарчĕ. Канашлăва килнисем хăш-пĕр предприятисен ертÿçисемпе тĕл пулма, калаçусем ирттерме те ĕлкĕрнĕ. Çак икĕ кун тĕллевĕ шăпах ĕнтĕ çавăн пек тĕл пулусем ирттересси. Малашлăх йĕркеллĕ пуласса шанма пулать, палăртрĕ Анатолий Геннадьевич. Çакна республикăна иртнĕ çул сакăр процент чухлĕ нумайрах инвестици килни те çирĕплетет (сăмах май, Раççейре çак кăтарту çичĕ процент чухлĕ чакнă).

Чăваш наци конгресĕн президенчĕ **Г. Архипов** та хăйĕн сăмахĕнче чăвашсен пĕр-пĕрне пулăшса пыма кирлине палăртса хăварчĕ. Чăвашсен çуррине яхăн республика тулашĕнче пурăнать. Вĕсем тĕрлĕ ĕçре вăй хураççĕ. Апла пулсан – вĕсен вăйĕпе те икĕ енлĕ çыхăнусем, пур енĕшĕн те усăллă çыхăнусем йĕркелеме усă курмалла. Кунта сăмах чăвашсен хушшинчи çыхăнусем пирки çеç мар, вĕсем урлă ытти халăх çыннисемпе, регионсемпе тытакан çыхăнусене вăйлатасси çинчен пырать, терĕ Геннадий Николаевич.

Кăнтăрла иртсен, тĕпрен илсен, хăнасем сăмах илчĕç, хăйсен предприятийĕсемпе, регионсемпе, вĕсен майĕсемпе паллаштарчĕç.

***

Паян – тĕл пулăвăн иккĕмĕш кунĕ. Хăнасем Шупашкарти предприятисемпе организацисенче пулаççĕ, вĕсен продукцийĕпе паллашаççĕ, тĕп хулари паллă вырăнсенче пулса кураççĕ.

Семинар-канашлăва хутшăнакансем каласа параççĕ.

**В.В. НИКОЛАЕВ, «Оренбурггазпром» АО генеральнăй директорĕ:**
Эпĕ – чăваш, Пушкăртстанри Аургазă районĕнче çуралнă. Аслă шкул пĕтернĕ хыççăн Салаватри нефтьпе хими комбинатĕнче ĕçлерĕм. Çавăнтанах мана Оренбург гели завочĕн тĕп инженерĕ пулма çирĕплетрĕç. Кун пек пысăк завод Совет Союзĕнче çеç мар, тĕнчере те çукчĕ.

«Газпром» пĕрлешÿре тĕп инженер, директор, генеральнăй директорăн çумĕ пулса ĕçлерĕм, халĕ – генеральнăй директор. Унта 1976 çултанпа ĕçлетĕп. Пирĕн пĕрлешÿре В.С. Черномырдин, «Газпром» правленийĕн Председателĕ Р.И. Вяхирев, унăн 1-мĕш çумĕ Шереметьев ĕçленĕ. Халĕ те манмаççĕ тăван предприятие...

Паян сирĕн «Химпромра» пултăм. Халăх хуçалăхне кирлĕ чылай продукци кăлараççĕ унта. Килĕшÿ тăватпăрах. Часах Шупашкарта хамăран представительствăна уçатпăр. Маншăн Чăваш Ен ют мар, мăшăрăм – Етĕрне районĕнчи Кăкшăмран. Çавăнпа кунта час-часах килсе çÿретпĕр.

**С.Ф. ПОПОВ, Санкт-Петербургри вăрман касса хатĕрлекен предприяти директорĕ:**
– Эпĕ кунта Н.В. Федоров Президент чĕннипе килтĕм. Халĕччен те килсе çÿренĕ. Чăваш Енпе çыхăнусем тытни пирĕншĕн те усăллă. Ленинград облаçне, сăмахран, çĕр улми нумай кирлĕ. Сирĕн вăл пур. Эпир хамăр предприяти урлă ăна туянма хатĕр. Хамăр продукцие Раççейре вырнаçтарни пирĕншĕн япăх мар. Çавăн пек япаласенех финнсем 5–10 хут хаклăрах сутаççĕ. Çитменнине, вăрманĕ пирĕн, ăна вĕсем тĕпĕ-тымарĕпех питĕ йÿнĕпе илсе тухаççĕ (кашни кун вун-вун карапппа турттараççĕ). Çакă пире килĕшмеет.

**А.А. ИВАНОВ, «Пушкăрт эмел курăкĕсем» фирма директорĕ:**
– Эпĕ мĕн пур чăваш пĕлекен паллă ялтан – Слакпуçĕнчен. Фирма эмел курăкĕсем пухать, тирпейлет, чĕркет, аптекăсене парать. Çулталăкра 1 миллион долларлăх продукци хатĕрлетпĕр. Тÿрех калатăп: К.В. Иванов, Ухсай Яккăвĕ çуралса ÿснĕ çĕр-шыв тĕлĕнмелле пуян: сут çанталăк парнисемпе мухтанма пултаратпăр. Акă, иртнĕ çул пирĕн фирма 65 тĕрлĕ курăк пухса тирпейлерĕ. Çавăнпа сирĕн аптекăсемпе çыхăну йĕркелесе яни икĕ енĕшĕн те усăллă пулĕччĕ.

**А.К. САМАРЕНКИН, «КамАЗ» АО генеральнăй директорĕн çумĕ:**
Кунта килнин уссине халех туйăрăм ĕнтĕ. Акă, «Текстильмаш» АОпа çыхăну тытни мĕн пама пултарнипе интереслентĕм. Пирĕн завода кирлĕ нумай япала туса кăлараççĕ иккен. Çывăх вăхăтрах çыхăнусем йĕркелесе яратпăр.

**В.И. ИСАЕВ, Пушкăртстанри Пишпÿлек районĕнчи Киров ячĕллĕ хуçалăх ертÿçи:**
– Хуçалăх тилхепине çичĕ çул тытса пыратăп. Таса чăваш ялĕ пирĕн Ситекпуç. 140 кил. Хуçалăх ĕçне куллен хутшăнакансем – 150, тивĕçлĕ канурисем 100 çын. «Ăçта чăваш – унта ăнăçу» тени пĕртте ÿстерсе калани мар тесе шутлатăп. Хуçалăх ĕçне тухаççĕ, тăрăшса ĕçлеççĕ. Çамрăксем те ялтах юлаççĕ.

Етĕрне районĕпе килĕшÿ турăмăр. Унта тиртен тĕрлĕ хатĕр, тум çĕлекен предприяти пур. Пирĕн вара тире, ниçта вырнаçтарайманнине пула, йÿнĕ хакпах сутма тивет. Пĕр-пĕринпе çапла килĕшрĕмĕр: эпир – тир, сахăр, вĕсем вара кĕрĕк, атă-пушмак, кирпĕч парĕç тата ытти те.

**В.Я. ФЕДОРОВ, Пушкăртстанри Агидель хула администрацийĕн ертÿçи:**
– Шур Атăл (Белая) юхан шыв хĕрринче çакăн пек илемлĕ ятлă хулана никĕсленĕренпе 17 çул çитрĕ ĕнтĕ. Пушкăрт атом электростанцине тăвакансен, унта ĕçлекенсен килĕ пулмаллаччĕ вăл. Каярах шухăшĕ улшăнчĕ пулин те, хула ÿссе, аталанса пычĕ. Халĕ кунта 21 пине яхăн çын пурăнать. Вĕсем вăтамран 26 çулта теме пулать. Хулари шкулсенче – 4464, лицейра 917 ача вĕренет. Хамăр патăмăра ĕçрен хăраман, саккунсене пăхăнса ĕçлеме пултаракан ĕçлĕ çынсене чĕнетпĕр.

С. КАРЯГИНПА Л. ФИЛИППОВА калаçнă.
*«Хыпар», 20.03.1998, 59№.*

## ЧĂВАШ ТĔНЧИ...
## «Чăваш тĕнчи» хаçат тухма тытăннă ятпа савăнса

*Чăваш тĕнчи ăçта вăл?*
*Чăваш тĕнчи чунра вăл.*
*Чăваш тĕнчи чĕлхере*
*Упранать-мĕн чиперех.*
*Чăваш тĕнчи – юрăра*
*Тата чăн калаçура.*
*Чăваш тĕнчи – тĕрĕре,*
*Тĕлĕнтермĕш кĕвĕре.*
*Чăваш тĕнчи – туй-çуйра,*
*Чĕрери вăрттăнлăхра,*
*Ырă ĕçкĕ-çикĕре,*
*Килĕшуллĕ çемьере,*
*Ĕмĕр тутлăхлă шăрттан –*
*Пирĕн чыс мĕн авалтан.*
*Çавăнпа чыса, ята*
*Нихăçан та çухатман.*
*Чăваш тĕнчи – йывăçра,*
*Хурăнта та юманра.*
*Чăваш тĕнчи – ĕçлĕхре!*
*Аллинче ун ĕç вĕрет:*
*Çавапа сулса ярсан*
*Çулăнать ун çур çаран.*
*Хĕвел тĕслĕ уй-хирте*
*Пĕрчĕ тăкăнмасть пĕртте.*
*Çуртне ĕмĕрлĕх лартать*
*Хулара, тăван ялта.*
*Чăваш тĕнчи – пĕлнĕ пул –*
*Ăраскалăмăр, кун-çул; .*
*Пурнăçне вăл хăй тăвать:*
*Йывăр е хĕн-хур, инкек –*
*Тăрăшать-çке лаша пек.*
*Малаша çул-йĕр хывать.*
*Чăваш тĕнчи – эс те эп,*
*Хамăрăн пĕтми хисеп.*

Георгий ЕФИМОВ, Чăваш халăх поэчĕ.
*«Хыпар», 28.03.1998.*

## ПРЕЗИДИУМ ЛАРĂВĔ ИРТРĔ

*Виçĕм кун Шупашкарта, Чăваш Республикин Вĕрентÿ институтĕнче, Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн анлă ларăвĕ иртрĕ. Унта ЧР Министрсен Кабинечĕн председателĕн пĕрремĕш çумĕ П.В. Ивантаев, ЧР культурăпа национальноçсен ĕçĕсĕн министрĕн çумĕ Н.Н. Сахаров, ЧНК Мăн Канашĕнче тăракансем, Конгресс хăнисем хутшăнчĕç.*

Чăваш наци конгресĕн президенчĕ **Г.Н. Архипов** Президиум йĕркеленипе юлашки вăхăтра ЧНК делегацийĕ Чĕмпĕр, Саратов,

Самар облаçĕсене, Тутарстан, Мари Эл, Пушкăртстан республикисене, Мускава, чăвашсем йышлă пурăнакан ытти регионсене мĕнле кайса килни, вĕсенче ирттернĕ тĕл пулусем çинчен каласа пачĕ. Республика тулашĕнчи чăвашсем хăйсем патне Чăваш Республикинчен килсе тăванлăх уявĕсем ирттерессе яланах кĕтеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен пурнăçĕнче чăваш юрри-ташши, чылай чухне чăваш сăмахĕ те çитсе каймасть. Çавăнпа хăйсене чăваш пулнăшăн, чăваш йăли-йĕркине тытса пурăнмашкăн хавхалантарса хăварнăшăн ЧНКна тав тăваççĕ. Президиум çак ĕçе кирлĕ те пысăк пĕлтерешлĕ тесе тата ăна малалла тăсмалла тесе шутлать. Хамăр тăванăмăрсем патне кайса çӳрени чăвашсен пĕр-пĕрин хушшинчи çыхăнăвне çирĕплетсе пыма май парать. Инçетри чăвашсене чăваш юрри-ташшипе савăнтарма ЧНК çумĕнче ятарласа художество пултарулăх ушкăнĕ йĕркеленĕ, музыка студийĕ ĕçлет.

Пĕтĕмлетсе каласан – тулай чăвашĕсен хушшинче чăвашлăха çĕклессишĕн нумай ĕç туса ирттернĕ. Çакăнпа пĕрлех хамăр республикăра та вăй хунă: чăвашлах ыйтăвĕсемпе тĕл пулусем, калаçусем ирттернĕ, ЧНК Патшалăх Канашне депутатсем суйлама кандидатсем тăратнă, чăваш журналисчĕсене ĕç вырăнĕнче сыхласа хăварассишĕн акци ирттернĕ... ЧНК «Чăваш халăхне XXI ĕмĕрте мĕн кĕтет?» конференцие хастар хутшăннă. Докладчик çак конференции иккĕмĕш ларăвне кăçал ирттермелле тесе шутлать. Унта каланă сĕнӳсене шута илсе ЧНК ЧР Правительствине çырупа тухнă, чăваш халăхĕн историйĕ çинчен каласа паракан кĕнеке пичетлессине йĕркелеме ыйтнă.

ЧНК çумĕнчи Ваттисен Канашĕн ертӳçи **А.И. Кибеч** ЧНКн юлашки çулталăкри ĕçне маларахри çулсенчипе танлаштарсан чылай лайăхрах тесе хакларĕ, 1998 çула наци чĕрĕлĕвĕн ĕçне сарнă çул пулчĕ терĕ, уйрăммăн илсен, ЧНК делегацийĕ кĕске вăхăтрах Атăлпа Урал хушшинчи регионсене çитсе чăвашсене хавхалантарса хăварнине ырларĕ. Кăçал Çĕпĕр чăвашĕсемпе тĕл пулса вĕсене çĕклеме сĕнчĕ. Делегацисем тухса кайнă чухне пĕрле илме парнесем кăна мар, чăвашла кĕнекесем те кирлĕ. Вĕсем вара çитсех каймаççĕ. Тен, теприн килĕнче ахалех выртаççĕ. «Ун пек литературăна Конгреса пырса парăр, чăвашла кĕнеке тытса курман çĕрсем те пур, вĕсене çитсе парăпăр», – терĕ А.И. Кибеч. Влаç тытăмĕсенче чăвашлăх ыйтăвĕсене ăнланакан çынсем ĕçленине те палăртрĕ. Вĕсем ЧНКна пулăшса пыраççĕ.

Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ **В.А. Иванов** ЧНК Президиумĕ кăçал тума палăртнă ĕçсемпе паллаштарчĕ. Чи пысăк та халăхăмăршăн пĕлтерĕшлĕ ĕç тесе ЧНК мухтавлă поэтăмăр Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 100 çул çитнине анлăн палăртасси тесе шутлать. Çак ĕçе çулталăк тăршшĕпех тытса пымалла. Шупашкар 500 çул тултарнă ятпа хисепленекен паркра Пăлхар-Чăваш патшалăхне туса хунăранпа 1100 çул çитнине палăртса чул палăк вырнаçтармалла. Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен калакан саккунне мĕнле пурнăçланине тĕрĕслес тĕллевпе ятарлă комиссисем йĕркелесе рейдсем ирттермелле. И.Я. Яковлев палăкне хатĕрлесе çитерсе вырнаçтарса лартмалла. Ваттисен канашĕсене республикăри мĕн пур районпа хулара йĕркелемелле.

Чăваш наци конгресĕн вице-президентне **В.П. Станьяла** хуласенчи шкулсенче чăвашла вĕрентесси пăшăрхантарать. ЧНК комиссийĕсен шкулсене çитсе çак ĕçе тĕпĕр хут тĕрĕслемелле тесе шутлать. Çуркунне Самарта библиотекăсенче ĕçлекенсене пухса семинар ирттерме сĕнет. ЧНК Мăн Канашĕн пĕр ларăвне Тутарстанра ирттерме ыйтаççĕ. Унта тепĕр хут çитсе чăвашсене чăмăртаса хăвармалла.

Культура тата национальноçсен ĕçĕсен министрĕн çумĕ **Н.Н. Сахаров** çак министерствăпа ЧНК юлашки вăхăтра тачă çыхăнса ĕçлесе пынине палăртрĕ. Министерство кăçал Самар облаçĕнче «Чăваш кĕнеки – диаспорăра» ятлă семинар ирттерме шутлать. Унта библиотекарьсене пухаççĕ.

Пĕрремĕш вице-премьер **П.В. Ивантаев** ларăва хутшăннисене ЧНК лартнă ыйтусене татса парас тĕлĕшпе Министрсен Кабинечĕ мĕнле ĕçсем тума шутлани çинчен каласа пачĕ. Уйрăммăн илсен – вице-премьер ЧНКпа тачă çыхăнса ĕçлеме шутланине пытармарĕ. Çеçпĕл Мишшин юбилейне кĕтсе илнĕ май ирттермелли мероприятисене хăйне хальтерех пĕлтерме ыйтрĕ.

Чăнах та, иртнĕ тапхăрта Президиум япăх мар ĕçленĕ. Малашне те çаплах пултăрччĕ.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 14.01.1999.*

## КАШНИ ЧĂВАШĂН ПАТРИОТ ПУЛАСЧĔ

*Умра – 21-мĕш ĕмĕр, халăхшăн ку таранччен мĕн тунине пĕтĕмлетмелли тапхăр. Тишкермелли вара çук мар – шăпах 20-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакан йăхташăмăрсем пĕр чăмăра пуçтарăнчĕç, Чăваш наци конгресĕ тăрăшнипе ушкăнăн-ушкăнăн пурăнакан чăвашсем хăйсен регионĕсенче наци культура автономийĕсем, наци обществисем, ытти тĕрлĕ центрсем йĕркелерĕç. Халĕ вĕсем тăтăшах Чаваш Республикинче ирттерекен тĕрлĕ мероприятие хутшăнаççĕ. Ку ĕçре, паллах, Чăваш наци конгресĕн тӳпи пысăк. Çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕсенче Шупашкарта Конгресăн Мăн Канашĕ пухăнмалла. Ун умĕн пирĕн корреспондент* ***ЧНК президенчĕпе Г.Н. Архиповпа*** *курса калаçнă.*

– Мăн Канаша мĕншĕн ирттеретпĕр-ха? Чăваш наци конгресĕн Аслă пухăвĕ 2 çулта пĕрре пуçтарăнмалла – IV Аслă пухăва 2000 çулта, Чăваш чĕлхи кунĕ умĕн, ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче ирттерме палăртнă. Ун умĕн Мăн Канаш пухса калаçас терĕмĕр, – çапларах пуçларĕ хăйĕн сăмахне Геннадий Николаевич. – Мăн Канашра чи малтанах ЧНК çак кĕске тапхăрта туса ирттернĕ ĕçсене тишкерĕпĕр. Кун йĕркинчи тепĕр пысăк ыйту – Раççей саккунĕпе килĕшӳллĕн Раççей шайĕнче чăваш наци культура автоломине тăвасси; Чăваш наци конгресĕн IV Аслă пухăвне ирттерме хатĕрленесси.

Паллах, чăвашсен Раççейри наци культура автономине туса хурасси, тĕпрен илсен, аякри чăвашсем хăйсем йышлă пурăнакан вырăнсенче наци культура автономине тунинчен те килет. Хальлĕхе кун пекки Саратовпа Ульяновск облаçĕсенче кăна регистрациленĕ-ха.

**– Раççейри ытти халăхсен те çакнашкал наци культура автономийĕсем пур-и е чăвашсем анчах пуçламăш утăмсем тăваççĕ-и?**

– Ун пек автономи тутарсен пур. Пирĕн те йĕркелемелле ăна федераци шайĕнче. Енчен те саккун ирĕк парсан – пур майсемпе те пирĕн наци политикине чăваш халăхĕн интересĕсене, ытти «вак» халăхсен интересĕсене Раççей шайĕнче хӳтĕлеме мĕн пуррипе пĕтĕмпех усă курмалла.

Раççейри халăхсен йышĕпе 4-мĕш вырăнта тăратпăр пулсан, Раççей Патшалăх Думинче пĕр чăваш та çукки, тĕслĕхрен, йĕркеллĕ япала-и?

**– Çак автономие тусан чăвашсене хӳтĕлесси, пĕр-пĕринпе çывăхлатасси, вĕсене пĕрлештересси вăйланать-ши?**

– Татса калама йывăртарах, мĕншĕн тесен ĕçлеме çăмăлах мар. Пуш сăмах çапакансем питĕ нумай. Чăваш наци конгресне кирек кам ертсе пырсассăн та тиркеççĕ. Ĕç патне çитсессĕн никам та укçасăр ĕçлесшĕн мар. Наци ыйтăвĕпе калаçакансемех тепĕр чухне хайсенчен мĕн те пулин тума ыйтсан «укçа тӳлетĕр-и?» теççĕ. Çак хушăрах патриотсем те сахал мар. Тĕрессипе, ЧНК вăйĕ çакăнта кăна. Ытти регионсенчи обществăсем те укçасăр-мĕнсĕрех ĕçлесе пурăнаççĕ. Тепĕр енчен, укçасăр пурăнма май çук, унсăр пĕр утăм та тăваймастăн. Конгресс ĕçĕнче паян конкретлă утăмсем тума палăртнă. ЧНК мар, Чăваш аталану партийĕпе Ваттисен Канашĕн политика йĕрне тытса пымалла. ЧНКн культура, халăхсен экономика çыхăнăвĕсене тата ытти ыйтусене тишкерсе ĕçлемелле. Пĕлтĕр, акă, ĕçлĕ çынсен пухăвне ирттернĕ хыççăн питĕ лайăх çыхăнусем йĕркеленчĕç.

**– Республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсемпе пĕрле тĕрлĕ семинар-канашлу, пухусем ирттеретĕр. ЧНК делегацийĕсем тăтăшах аякри чăвашсем патне тухса çӳреççĕ. ЧНК ĕçĕ-хĕлĕ çав-çавах чылайăшне тивĕçтермест.**

– Чăн та, пире ĕçлемеççĕ текенсем пур, çав вăхăтрах Чăваш наци конгресне аякран килнĕ çынсем кĕрсе тухман кун çук. Эппин, эпир кирлĕ. Акă халĕ кăна Санкт-Петербурга куçса кайма хатĕрленнĕ хамăр

чăвашсемех килчĕç те – Питĕрте паллакансем çук-и тесе адрес ыйтрĕç. Паллах, эпир чăваш общество центрĕн адресне паратпăр кун пек чух. Е Санкт-Петербургран хăйĕнчен килеççĕ те пĕр-пĕр предприятипе çыхăнусем йĕркелеме ыйтаççĕ. Пирĕн аппарат пысăках мар, 4–5 çын анчах, çавăнпа хăш чух çав вак-тĕвекпех вăхăт иртет. Патшалăх шайĕнчи питĕ пысăк, пĕтĕм халăх ыйтăвĕсене татса параймастпăр паллах. Тепĕр енчен илсен, ку таранччен ЧНК штачĕ те пулман.

**– Мăн Канаш ирттересси тăкаксăр пулмасть. Укçа-тенкĕ енчен кам пулăшать?**

– Республика тулашĕнчи чăвашсем те хутшăнаççĕ Мăн Канаша. Патриотсем нумаях мар пулин те – пур, вĕсем те пулăшаççĕ. Халĕ Самарсем, Оренбургсем пулăшма шантарчĕç. Чăваш наци конгресне тытса тăма патшалăх кăçал 25 пин тенкĕ уйăрнă. Тĕрĕссипе вăл çулталăклăх ăшă, аренда, çутăпа телефон тăкакĕсене тӳлемелĕх кăна. Бар, бизнес-магазинсем уçма сĕнеççĕ, анчах ăна каллех укçа-тенкĕсĕр тăваймăн. Тепĕр пысăк ыйту пур пирĕн: енчен те патшалăх ЧНК валли пĕр-пĕр илемлĕ çурт уйăрса параймасть пулсан, эпир ăна хамăр тума та хирĕç мар.

**– Мăн Канаша Чăваш патшалăхлăх кунĕнче ирттерме палăртнине мĕнле сăлтавлатăр?**

– Аслă Пуху вăхăчĕ çывхарать. Тепĕр енчен – уяв. Килнĕ-килнех – Чăваш патшалăхлах кунне уявланине те курччăр, канччăр аякри йăхташăмăрсем. Сăмах май, Чăваш патшалăхлăх кунне тăвасси, ун пирки саккун кăларасси ЧНКпа пĕрле тунă ĕç, идейи те Конгресран тухнă. Халĕ вăл пирĕншĕн питĕ пысăк уяв. Çавăнпа Мăн Канаша ку вăхăталла ирттерме палăртнă.

**– Апла тăк Шупашкара тĕрлĕ регионсенчен пысăк делегацисем килеççĕ. Мăн Канаш ларăвне миçе çын хутшăнмалла?**

– 135 çын. Кашни регионтан, кашни районтан икшер çын майлă хутшăнать. Мăн Канаша çавăн пекех кунти ентешлĕхсен пуçлăхĕсем кĕреççĕ. Шупашкартан кăна – 40 яхăн, районсенчен 2–3 çын, республика тулашĕнчен чи нумаййи Тутарстанран – 9 çын, Самар облаçĕнчен –5-ĕн, Чĕмпĕрпе Пушкăртстанран – 6-шарăн.

Оксана СЮЗЮКИНА.
*«Хыпар», 22.06.1999.*

## МĂН КАНАШ: ÇИТМЕНЛĔХСЕНЕ ПЫТАРМАСĂР

*Ĕнер Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн ларăвĕ иртрĕ. Унта Мăн Канаш членĕсем республикăри районсемпе хуласенчен тата республика тулашĕнчен (Самар, Ульяновск, Оренбург облаçĕсенчен, Тутар тата Пушкăрт республикисенчен, Мускавран) хутшăнчĕç. Пĕтĕмпе 93 çынна регистрациленĕ.*

Ларăва Чăваш наци конгресĕн Аслă пухăвĕн председателĕ **В.П. Станьял** уçрĕ. Унта хутшăннисем ЧНК активисчĕсем пулнă, пиртен уйрăлса кайнă Авенир Петровские тата Ипполит Агакова пĕр самант шăп тăрса асăнчĕç.

Мăн Канаш ларăвĕн кун йĕркинче çак ыйтусем: Мăн Канашăн 1997–1999 çулсенчи ĕçĕ-хĕлĕ, ЧНК Аслă пухăвне 2000 çулта ирттересси, ЧНК хаçатне кăларасси, ЧР Конституцийĕн проекчĕ пирки Мăн Канаш шухăш-кăмăлне палăртасси.

Пĕрремĕш ыйтупа ЧНК президенчĕ **Г.Н. Архипов** доклад туса пачĕ.

– Республика бюджетĕнчен уйăракан укçа-тенкĕ ЧНК пӳлĕмĕсемшĕн тата телефоншăн тӳлеме кăна çитет, – терĕ вăл. – ЧНКн ытти мĕн пур тĕллевне пурнăçлама пĕтĕмпех хамăрăн тупма тивет. Спонсорсенчен ыйта-ыйта илетпĕр. Пур чухне те пулăшаймаççĕ. Ĕçре чăрмавсем сиксе тухаççĕ. Халĕ ЧНК штатĕнче 4 компьютер, хамăрăн автомашина пур.

Докладçă Самар енчи чăвашсене хăйсен историне хисепленĕшĕн, ăна халăх хушшинче сарнăшăн ырă тĕслĕх вырăнне хурса илсе кăтартрĕ. Кашни тăрăхрах чăвашсен хăйсен историне лайăх пĕлмелле, унпа мăнаçланмалла. Ку енĕпе ЧНК ятарласа тĕллевсем палăртать.

ЧНК президенчĕ, ЧР Конституцийĕн проекчĕ пирки сăмах пуçарса, ЧР Президенчĕн чăваш чĕлхине пĕлмеллех терĕ. Халăх тĕрĕслевĕ пулмасан проекта «Президентăн патшалăх чĕлхисене пĕлмелле» текен йĕркесене кĕртмесен те пултараççĕ. Çавăнпа ЧНК Патшалăх Канашĕн сессийĕнче проекта малалла мĕнле пăхса тухнине тĕрĕслесех тăрĕ.

Г.Н. Архипов Конгресăн правительствăпа, Культура тата национальноçсен ĕçĕсен министерствипе культура, чĕлхе ыйтăвĕсемпе килĕштерсе ĕçлемелле тесе шутлать. Çакăншăн ăна хăшĕ-пĕри асăрхаттаркаласа илни пулнă, апла пулин те вăл тĕрĕс çул-йĕр тытса пырать тесе шутлать. **«ЧНК хăй умне политика тĕллевĕсем лартмасть, – терĕ Геннадий Николаевич. – Çакăн пирки эпĕ президент тивĕçĕсене пурнăçлама тытăниччен калана. Политикăпа Чăваш аталанăвĕн партийĕн ĕçлемелле, çав енĕпе унăн хăйĕн ĕçне лайăхлатмалла».**

Президент чăваш диаспорипе мĕнле ĕçлени çинчен тĕплĕн каласа кăтартрĕ. ЧНК делегацийĕ иртнĕ тапхăрта нумай регионти чăвашсем патĕнче пулса тĕл пулусем ирттернĕ. Çĕпĕре кăна çитеймен. Çак енĕпе Конгреса Культура тата национальноçсен ĕçĕсен министерстви нумай пулăшнă. Докладçă чăваш ĕçĕшĕн хастаррăн вăй хуракан Василий Николаев (Оренбург), Олег Мустаев (Ульяновск) хушамачĕсене асăнчĕ. Мускавпа вара çыхăну тивĕçлĕ шайра мар-мĕн.

– ЧНК Президиумне республикăри чăвашсен хушшинче çителĕксĕр ĕçленĕшĕн ӳпкелеççĕ, – терĕ малалла Г.Н. Архипов. – Чăнах та, сахал ĕçлетпĕр. Апла пулин те хăш-пĕр акцисем ирттернĕ. Сăмахран, чăваш хаçачĕсене бюджетран укçа уйăрма, чăваш журналисчĕсене хăйсен вырăнĕсенче хăварма, Конституци проектне ЧНК сĕнĕвĕсене кĕртме ыйтса пикетсем йĕркеленĕ. Кăçал кăна Шупашкарти ача сачĕсенче 67 тĕл пулу иртрĕ. Конгресс çумĕнчи Ваттисен канашĕ вăл е ку ыйтупа чăвашсене хӳтĕлесе заявлени темиçе те турĕ. Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа чупу ирттертĕмĕр. Тунă мĕн пур ĕç çинчен каласа пĕтереймĕн. Пирĕн ĕçре çитменлĕх нумай пулĕ, вĕсене пĕтерсе пыма тăрăшăпăр.

Конгресра экономика ыйтăвĕсемпе ĕçлекен **К.П. Портнов** ЧНК çумĕнче предпринимательсен ятарлă фондне, халăхăмăра пулăшакансене «Чăваш меценачĕ» хисеплĕ ят парассине йĕркелеме, Конгресс çумĕнче искусствăпа культура центрĕ уçма сĕнчĕ. Çак тытăмсене йĕркелесен укçа-тенкĕ пухма май килĕ. Хальлĕхе вара чăвашлăх идейине сарма йывăр: чухăнсемпе никамах та калаçасшăн мар.

Мăн Канаш членĕ [РФ Хăрушсăрлăх службин отставкăри генерал-майорĕ] **В.А. Тихонов** республикăри экономика хăрушсăрлăхĕ çинче чарăнса тăчĕ. Уйрăммăн илсен – республикăри акцисен тĕрĕслев [контроль] пайĕ республика аллинчех пулмалла, çакăн çинчен Конституцире те çырса хăвармалла. Унсăрăн пурлăх республика тулашне кайма пуçлать, унăн хуçисем чăвашсем мар, урăххисем пулĕç.

ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ **М.А. Михайловский** ЧР Конституцийĕн проекчĕ пирки каларĕ.

– Паянхи куна пирĕн пĕр проект кăна, – терĕ вăл. – Ăна вăхăтлăх комиссии пăхса тухса сессие кăларнă. Чăваш депутачĕсен чăваш халăхне тивĕçтерекен Конституци йышăнмалла. Анчах чăвашсем те çавăншăн тăрăшманни сисĕнет.

Правительство председателĕн пĕрремĕш çумĕ **П.В. Ивантаев** Шупашкарти Ехрем хуçа çуртне ЧНКна парасси çинчен пĕлтерчĕ. Вăл та Правительствăпа ЧНК килĕштерсе ĕçленине палăртрĕ. Анчах тепĕр чухне хăш-пĕр политик ЧНКпа усă курнăран Президент кăмăлĕ улшăннине пытармарĕ.

Ларура тухса калаçнисем культурăна, чĕлхене аталантарассипе çыхăннă ыйтусене татса панă чухне тухса тăракан йывăрлăхсем çинчен каласа кăтартрĕç, вĕсене пĕтермешкĕн пулăшма ыйтрĕç.

Мăн Канаш кун йĕркинчи кашни ыйтупах йышăну турĕ.

Юрий МИХАЙЛОВ.
*«Хыпар», 24.06.1999.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН МĂН КАНАШĔН ЙЫШĂНĂВĔСЕМ

**Чăваш Республикин Конституци проекчĕ çинчен**

Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕ, Чăваш Республикин Конституцийĕн çĕнĕ проекчĕ çинчен Мăн Канаш конгрессменĕсем тата Патшалăх Канашĕн депутачĕсем тухса каланисене сӳтсе явса, çапла йышăнать:

**1.** Чăваш Республикин Патшалăх Канашне тăратнă проекта тĕппипех сивлес, ăна Чăваш Республикин халăхсен интересĕсене тĕпе хурса çырманнине палăртас.

**2.** ЧНК çумĕнчи Ваттисен Хуралне [Канашне] çапла тума сĕнес: ЧР Конституцийĕн проектне халăха хирĕçле çырнă çынсенчен кама-кама «Намăс хапхи» витĕр кăларассине ятарлă ларура пăхса тухмалла.

**3.** Уйрăммăн çакна палăртса хăварас: «ЧР Элтеперĕ 40 çултан çамрăк мар пулмалла, умлă-хыçлă икĕ срока çеç суйланмалла тата чăвашла калаçма-çырма пĕлмелле» тенине Конституцире татăклăн çырса хума ыйтатпăр. Проекта хаçатсенче пичетлеме, 1999 çулхи авăнăн (сентябрĕн) 30-мĕшĕччен халăхпа сӳтсе явмалла тăвас. Тавлашуллă ыйтусемпе референдум ирттерес.

**4.** Чăваш Республикин суверенитетне хӳтĕлекен комитета ЧР Президенчĕн администрацийĕпе, Чăваш Ен правительствипе, Патшалăх Канашĕпе çине тăрса тата усăллă ĕçлеме ыйтас, ЧР Конституцийĕн проектне сӳтсе явса якатнă çĕре тӳрремĕнех хутшăнма хушас, ларусене хутшăнма ЧНК ячĕпе мандатсем парас.

**Чăваш наци конгресĕн Ялавне тăвасси çинчен**

Чăваш наци конгресĕн Элем – Шурăмпуç çăлтăрĕ, Гимн – «Алран кайми» юрă пур. Чăваш наци конгресĕн Президиумĕпе секретариачĕ, ӳнерçĕсемпе канашласа, Конгресс Ялавĕн тĕслĕхĕсене хатĕрленĕ.

Мăн Канаш Ялав тĕслĕхĕсемпе паллашнă хыççăн çапла йышăнать:

**1.** Ялав варрине Шурăмпуç çăлтăрне ӳкернĕ тĕслĕхе никĕс вырăнне йышăнас, ăна татах лайăхлатма ыйтас.

**2.** Ялав тĕсĕ çирĕп, Элемĕ уçăмлă пулмалла, ăна алă вĕççĕнех çĕлемешкĕн ансат тума тăрăшмалла.

**3.** Президиума Конгресс Ялавне туса çитерме хушас, унăн ӳкерчĕкĕпе çырса катăртнине ЧНК IV Аслă пухăвĕччен пичетлесе халăхпа сӳтсе явас. Сĕнӳсене шута илнĕ хыççăн ялава Аслă пухура çирĕплетес.

**Районсемпе регионсем хушшинчи тăванла хутшăнусене вăйлатасси çинчен**

Чăваш наци конгресĕн çичĕ çулхи ĕçĕ çакна лайăх çирĕплетсе пачĕ: чăваш халăхĕн тĕрлĕ çĕрте пурăнакан ушкăнĕсем хăйсен авалхи тăванлăх тымарĕсене çухатман, вĕсем хăйсен историлле тăван çĕршывĕпе çĕнĕ çыхăнусем йĕркелеме тăрăшаççĕ. Çакă аякри регионсенче пурăнакан тăвансене пĕр-пĕринпе культура, хуçалăх, экономика, çемье хутшăнăвĕсене çирĕплетме пулăшрĕ. Кемĕр облаçĕнчи Прокопьевск районĕ Чăваш Республикин Тăвай районĕпе, Самар облаçĕнчи Шунтал районĕн культура пайĕ Чăваш Республикин Сĕнтĕрвăрри районĕнчи культура пайĕпе, Елчĕк районĕнчи хуçалăхсем Самар облаçĕнчи Похвиçнĕ районĕнчи хуçалăхсемпе тачă хутшăнса тăраççĕ, пĕр-пĕрне пулăшаççĕ. Шкулпа шкул, вулавăшпа вулавăш, ялпа ял туслашнă-тăванлашнă тĕслĕх нумай.

Çакна шута илсе ЧНК Мăн Канашĕ Чăваш Республикин кашни районпа, ялсен администрацийĕсемпе, шкулсемпе тулай тата тулаш чăвашри кашни республика, облаç, район, хула е ялсем хушшинче чăваш пĕрлешĕвĕсем, центрĕсем, ентешлĕхĕсем, пултарулăх, спорт тата ытти ушкăнсем урлă тăванла çыхăнусем, килĕшӳсем йĕркелеме сĕнет. Çак ĕçе ЧНК IV Аслă пухăвĕччен туса çитерсен аванччĕ.

ЧНК Президиумне çав тĕллевсене тата тĕрлĕ енлĕ пулăшу парас шутпа Инçет Хĕвел тухăç, Хĕвел тухăç Çĕпĕр, Хĕвел анăç Çĕпĕр тата аякри ытти регионсенчи чăваш вырăнĕсем тăрăх çутлăхпа культура «десанчĕсем» ирттерме хушас.

Тăванла хутшăнусен ĕçне куллен йĕркелесе пыма ЧНКн ĕçлĕ çыхăнусен тата хăналăхпа çӳрев комитечĕсене (А.И. Лукианов, С.В. Мясников) тата ЧР Культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерствин наци ĕçĕсен пайне (М.Н. Краснов) çирĕплетес.

**ЧНК Фондне тăвасси çинчен**

**1.** ЧНК çумĕнче экономика ыйтăвĕсемпе ĕçлекен Фонд тăвас, ăна регистрацилес.

**2.** ЧНК Фончĕ çумĕнче ĕçлĕ çынсен, пайтаçăсен, пулăшуçăсен бизнес центрне е клубне йĕркелес.

**3.** ЧНК Фончĕн директорне ЧНК Президиумĕн пайташне (членне) Константин Петрович Портнова çирĕплетес.

**Тулай чăвашĕсем валли ятарлă хаçат уçасси çинчен**

Чăваш наци конгресĕ халĕччен хи кашни пухурах ятарлă хыпарлав агентстви тăвасси пирки сăмах хускатрĕ. Пĕрремĕш съездра (1992) ЧР Министрсен Кабинечĕ кăларакан «Чăваш Ен» (Чувашский край) хаçата ЧНКпа пĕрле тулай чăвашĕсем валли те пичетлесси çинчен ыйту лартнăччĕ. Ку ыйту халĕ те çивĕч тăрать.

ЧНК Мăн Канашĕ çапла йышăнать:

**1.** Шупашкарта тата республика тулашĕнче тухакан чăваш хаçачĕсен («Канаш», «Урал сасси», «Самарьен», «Сувар» тата район хаçачĕсем) пĕрлештернĕ вăйĕпе тулай чйвашĕсем валли уйăхра пĕрре ятарлă номерсем кăларма сĕнес.

**2.** Чăваш Республикин правительствинчен – Министрсен Кабинетĕнчен «Чăваш Ен» (Чувашский край) хаçата Чăваш наци конгресĕпе пĕрле тулай чăвашĕсем валли те кăлармалла тума ыйтас.

**Наци мухтавĕн кĕнекине тата хисеплĕ ятсем тăвасси çинчен**

Чăваш наци конгресĕн Тав кĕнеки, «Намăс хапхи» тата Чăваш тавра пĕлӳçисен союзĕпе пĕрле йĕркеленĕ «Хисеплĕ тавра пĕлӳçĕ», «Чăваш халăхĕн ăс-хакăл ăсти», «Чăваш халăх ăсчахĕ» ятсем пур. Чăваш наци конгресĕн тĕп ĕçтăвкомне (Президиума), секретариата, яланхи комитетсене тулай чăвашĕсенчен Конгресăн хăйĕн хисеплĕ ятсем пулмалли пирки сĕну нумай килнĕ. Çав сĕнӳсене пăхса тухса ЧНК Мăн Канашĕ çапла йышăнать:

**1.** ЧНКн Наци мухтавĕн кĕнекине тăвас. Этемлĕх аталанăвĕшĕн, халăхсен танлăхĕпе туслăхĕшĕн, ырлăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн, чăваш наци аталанăвĕшĕн хастар кĕрешнĕ çынсен ячĕсене Мухтав кĕнекине кĕртмелли тăрăма (положение) хатĕрлесе çитерес.

**2.** Уйрăмах пысăк хастарлăхпа палăрнă çынсене Чăваш наци конгресĕ паракан хисеплĕ ятсен йĕркине çирĕплетес. ЧНК Президиумне хисеплĕ ятсем çинчен калакан тăрăма (положение) йышăнма хушас.

ЧНК Мăн Канашĕн председателĕ В.П. СТАНЬЯЛ.
*«Хыпар», 24.06.1999.*

## ХАЛĂХ КЕРМЕНĔ КАПĂРЛАНАТЬ

*Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ Ехрем хуçан Шупашкар варринче чылай хушă ялăхса ларнă виçĕ хутлă пĕр çуртне Чăваш наци конгресне пачĕ. Халĕ кунта хĕру ĕç пырать. Ăна пĕтĕм халăхпа юсама тытăннă. Çак тĕллевпе ятарласа йĕркелӳ ушкăнĕ тунă, укçа-тенкĕ шутне [счетне] уçнă, Ниме тума пулăшу хучĕсем салатнă.*

Нумай хут тĕплĕ сӳтсе явса иккĕлентерекен ыйтусене татса панă, юсав ĕçĕсене ирттерме Белоруссирен Шупашкара ятарласа килнĕ пултаруллă пайтаçа Владислав Леонидович Никитинран ыйтнă. Юсав ĕçĕсен калăпăшне тата çурт ăш-чиккин планне йĕркелӳ ушкăнĕ çирĕплетнĕ.

Сӳтсе явнă çĕре нумай-нумай çын хутшăнчĕ, кашни хăйĕн шухăшне каларĕ. Пĕрисем 100 пин, теприсем 1 тенкĕ пама пултарнине палăртрĕç. Халăх çурчĕ пирки халĕ те, кайран та тавлашу ан пултăр, пĕтĕм ĕç таса та тӳрĕ кăмăлпа ирттĕр терĕç. Халăх керменĕ килĕшӳ керменĕ пулмалла! – çапла тупа тусах каларĕç ЧНК тĕпелне пухăннă чăвашсем.

Пысăк нимере чăваш чăмăртанса вăр-вар ĕçлеме пултарни пурне те паллă. Ку хутĕнче кирлĕ те курăмлă ĕç пуçартăмăр, ăна Чăваш наци конгресĕн 4-мĕш Аслă пухăвĕччен, хамăр пата тĕрлĕ çĕртен хаклă тăвансем килсе çитиччен туса пĕтерес пулать.

Шухăшланă ĕç тирпейлĕ пулма пултарĕ-ши тесе — ниме йыхравне пĕлтериччен халăх хушшине тухса пăхрăмăр. Мана, сăмахран, чăвашла вĕрентекенсен хушшинче калаçса пăхма ыйтрĕç. Чăваш Республикин Вĕрентӳ институтĕнче тата Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче ĕçлекенсем 10—20 тенкĕрен пуçласа 50—100 тенкĕ таранах сăмах вакламасăрах хывма пуçларĕç. Ниме шухăшĕпе хавхаланнă вĕрентӳçĕ, чăваш чĕлхипе самахлăхĕн меслетçи Маргарита Данилова «аллăм çăмăл пултăр, тытăннă ĕç ăнса пытăр!» тесе тӳрех 100 тенкĕ хыврĕ. Паллă тĕпчевçĕсем, художниксем Кермене хайсен кĕнекисене, картинисене парас кăмăллă. Çавсене шута илсе Керменте кăтартмăш-кипет (выставка-магазин) уçас терĕмĕр. Унта чăваш ăс-хакăлĕпе çыхăннă тавара тулай чăвашĕсене сутма тытасах пулать, мĕншĕн тесен аякран килнĕ тăвансем кĕнекесем, журналсем, эрешленĕ тумтир, чăваш юррисен кассетисене, тăван вырăнсен картинисене, вĕрентӳ кĕнекисене яланах ыйтаççĕ. Эппин, Халăх Керменне кирек мĕнле майпа та пулăшма юрать.

Тулаш енчен Конгресс керменĕ хальхи пекех юлать, мĕншĕн тесен вăл истори палăкĕ шутланать, ăна çĕмĕрме юрамасть.

Çурт кун-çулĕ вăрăм. Вăл Ехрем хуçан Шупашкарти вицĕ хитре çуртĕнчен пĕри. Унăн хальхи адресĕ — Володарский урамĕ, 10. Ĕлĕк Ярославль урамĕпе Ятсăр (Безымянная) тăкăрлăк хĕресленнĕ çĕрте ларнă. Ăна ватă Ехрем Ефремов хуçан мăнукĕ Николай Прокопьевич Ефремов (1860—1921) купса 1909 çулта ытарайми арăмĕн Александра Флегентовнăн кăмăлне кура лартнă. Çурт икĕ хутлă тата вицĕ хутлă пайсенчен тăрать. Ахальтен мар. Шăпа уйăрнă икĕ тĕнчене пĕрлештернĕ вăл. «Хамăр вилсен ку çуртран халăх керменĕ е чиркӳ туччăр», — тесе хăварнă ача-пăчасăр пурăнса ирттернĕ купсапа унăн чипер майри. Чăнах та, çав вăхăт çитрĕ — Ехрем Микулин çурчĕ Халăх керменĕ, сапаланнă Чăваш тĕнчин çурчĕ пулса тăчĕ.

Çуртăн икĕ пайĕ пĕрлешнĕ çĕрте, урамран кĕмелли алăк çинче çур çаврашка веранда, ун çинче солярий (хĕвелпе хĕртĕнмелли вырăн) пулнă, шалта — тĕрлĕ пӳлĕмсем. Аялти хутра, 1918 çулта тĕрĕслесе çырни тăрăх, кĕрсенех — хывăнмалли-тирпейленмелли алкум (прихожая), пĕрер чӳречеллĕ икĕ пӳлмек — ĕçлĕ çынсене лармa (пĕрне — «помещение заведующего Е.Д. Горскаго», тепĕрне «помещение зав. Шельдякова» тенĕ), унтан — пилĕк чӳречеллĕ зал, икĕ чӳречеллĕ апатлану пулĕмĕ (столовăй), буфет-пӳлĕм, пилĕк чӳречĕллĕ кабинет (унта юман шкапсемпе буфетсем, кĕнеке çӳлĕкĕсем, çемçе сĕтел-пукан, чаплă ӳкерчĕксем тата ытти те пулнă). Апатлану буфечĕ икĕ шайлă, аялта икĕ чӳречеллĕ кухня, чăлан, тула тухмалли кĕтес (туалет) тата ытти те.

Пĕрремĕш хутран иккĕмĕшне хăпармалли пусма картлашкисем сарлака та капăр, иккĕмĕш хутăн кăритурĕсем хайне майлă.

Иккĕмĕш хутра икшер те виçшер чӳречеллĕ 4 пӳлĕм, ваннăсен пӳлмекĕ... Халĕ вĕсем урăхла, кунта ларусем ирттермелли пысăк зал пур. Ăна, паллах, çаплипех хăвармалла.

Виççĕмĕш хутра — виçĕ чӳречеллĕ кăритур, тăватă чӳречеллĕ пӳлĕм. Мăшăрлану керменĕ пулнă чухне çакăнта çамрăк мăшăрсене шампань эрехне уçса саламлатчĕç.

Халĕ Халăх керменĕн кил картийĕ юлман. Малтанах унта кирпĕч сарай, кӳмелĕх (каретник, хальхилле каласан — гараж), ут вити, мунча, хурал пӳрчĕ тата ытти те ларнă. Кермен умĕнче икĕ кăвак чăрăш сарăлса ӳснĕ. Вĕсене инçетри Канадăранах илсе килнĕ тесе çырнăччĕ тавра пĕлӳçĕсем.

Николай Ефремов купса хулара паллă çын шутланнă. Ăна виççĕмĕш Патшалăх Думин членне суйланă. 1906 çултанпа «П.Е. Ефремовпа ывăлĕсем» суту-илӳ çурчĕн ертӳçинче тăнă, Шупашкар хулин пуçлăхĕнче ларнă. Сăмах май, унăн шăллĕсем Сергейпа Федор та хула мэрĕсем пулса тăнă. Кĕçĕн шăллĕ Федор пиччĕшĕнчен те чаплăрах çурт лартнă. Вăл çурт халĕ К.В. Иванов урамĕнче. Унта ӳнер музейĕн картинисен галерейи вырнаçнă. Ĕлĕкрех ку çуртра Чăваш Республикин тĕп вулавăшĕ ĕçлетчĕ.

Николай Прокопьевич, Ехрем хуçан аслă ывăлĕ, çӳллĕ, çирĕп, кĕрнеклĕ арçын пулнă, суту-илӳ ĕçĕнче пултарулăх кăтартнă. Анчах вĕри чунлă пулни курăнать, мĕншĕн тесен ашшĕ каланă хĕре качча илмен, хăй куç хывнă Сашенькăна — Александра Иевлевăна хытă юратнă. Ашшĕ пĕрлешме ирĕк паман. Те — çав чиперкке хĕрарăм сахал вĕренни, çĕвĕç кăна пулни килĕшмен Ехрем хуçана, те — унăн тăванĕсенчен пĕри ăна хирĕç Сената çитиех çăхав çырни тарăхтарнă. Çапла вара, Ехрем Микулин хут уйăрнă арăмĕ те, ачи-пăчи те пулман. Унăн шăллĕ Хĕветер те ашшĕне итлесех кайман. Вăл та арăмне таçтан Аçтăрхантан тупса килнĕ — ташлакан-юрлакан шутсăр чиперскере, Любовь Николаевна «артисткăна». Вĕсен те ача-пăча пулман. Вăталăх шăллĕн, Сергейĕн, кил-йыш ăнса пынă. Халĕ унăн тăхăмĕсем Хусанта пурăнаççĕ. Шупашкарта вăл ашшĕн тĕп килĕнче (хальхи Чăваш наци музейĕн виçĕ хутлă çурчĕ) пурăннă.

Н.П. Ефремов çуртне (особнякне) Чăваш халăх керменĕ туса хуни Николай Прокопьевичпа унăн саккунсăр арăмĕ Александра Флегентовна каласа хăварнине тӳрре кăларчĕ. Хуçисене 1917 çулхи пăлхавăр хыççăн килĕнчен хăваланă. Анчах çурт усăсăр ларман. Малтанах тăлăх ача-пăча валли хӳтлĕх (приют) уçнă, унтан Чăваш автономи облаçĕн революци комитетне панă (çурт çинче çавна палăртакан асăну хăми пур; кунта Çеçпĕл Мишши ревтрибунал председателĕ пулса кĕнĕ). Каярахпа çуртра ача-пăча валли сĕт кухни уçнă, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче тăлăх ачасен çурчĕ пулнă. Вăрçă хыççăн Чăваш ăслăлăх академине çак çуртра уçма планласа хунă, анчах сывлăх министрĕ çурта пама килĕшмен пирки академи уçăлайман.

Шупашкарта пурăнакан нумай-нумай кил-йыш ку çурт Мăшăрлану керменĕ пулнине манса кайман-ха. Малашне те Халăх керменĕ çынсене телей кӳрекен вырăн пулса юлĕ. Ĕлĕкренпех кунта юрату, килĕшӳ, телей, танлăхпа хӳтлĕх хуçаланнă. Малашне те çапла пултăр!

Виталий СТАНЬЯЛ,
ЧНК Аслă пухăвĕн председателĕ.
*«Хыпар», 23.02.2000, 33№.*

# 2000, çĕртме, 21—22: IV Аслă пуху



ЧНК Аслă пухăвĕ уçăлать: «Алран кайми...».

## ЧНК СЪЕЗЧĔ ЧĂВАШĂН ÇĔНĔ ĔМĔРТИ ШĂПИНЕ ПАЛĂРТĔ

*Ĕнер Пичет çуртĕнче Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Г.Н. Архипов, А.П. Леонтьев вице-президент тата ЧНК Аслă пухăвĕн председателĕ В.П. Станьял республикăри массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсем валли пресс-конференци ирттерчĕç.*

**Г.Н. Архипов** кăçалхи çĕртме уйăхĕн 21–22-мĕшĕсенче Шупашкарта, Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче, иртекен Чăваш наци конгресĕн IV Аслă пухăвĕ умĕн пурнăçланă ĕçсене пĕтĕмлетрĕ. Республикăри кашни районтах ЧНК уйрăмĕсене туса хунă,делегатсем суйланă. Çĕр-шыври чăвашсем йышлă пурăнакан регионсенчен 200 ытла делегат килсе çитмелле. Хăнасене шутласан наци форумне 1000 çынна яхăн хутшăнĕ.

Съездăн пĕрремĕш кунĕнче отчет докладне, çум докладсене сӳтсе явма палăртнă, чăваш наци культура автономийĕсен тата диаспора ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма тĕллев лартнă. Çав кунах ЧНК ертӳçисемпе ĕç тăвакан органсен суйлавĕ иртет. Аслă пухăвăн иккĕмĕш кунĕнче делегатсем секцисене пайланса малалла ĕçлĕç.

Черетлĕ пуху Республика кунĕ умĕн иртнĕ май хăнасемпе делегатсем уяв мероприятийĕсене те хутшăнма кăмăл тăваççех. Çавăнпа çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕсенче ултă ушкăна пайланса вĕсем Çĕрпӳ, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Вăрнар, Вăрмар, Муркаш районĕсенче пулса курĕç. Мускаври, Самарти, Стерлитамакри пултарулăх коллективĕсем Етĕрне, Патăрьел, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче концертсем кăтартĕç.

Шупашкарти Володарский урамĕнчи 10-мĕш çурт кунран кун капăрланса пыни куç умĕнчех. ЧНК президенчĕ çĕртмен 20-мĕшĕсенче Чăваш халăх керменне съезд делегачĕсемпе хăнасене кăтартасшăн. Унччен çурт тул енчен хатĕр пулмалла.

Нимене хутшăннă çынсем лотерея вылявне хутшăнма 30 пин карточка ярса пană. Вĕсем тăрăх хаклă парнесем выляттарĕç. Съезд умĕнхи йĕркелӳ ĕçĕсене пĕтĕмпех туса çитернине, Аслă пуху тухăçлă ĕçлессе, малашлăх тĕллевĕсене уçăмлăн палăртасса шаннине пĕлтерчĕ Г.Н. Архипов.

**В.П. Станьял** чăвашсем ытти халăхсенчен маларах пĕрлĕх йĕркелени, çавăнпа та хальхи вăхăтра пайăрланса чăмăртанма вăхăт çитни çинче чăрăнса тăчĕ. «Пирĕн тĕп штаб – ЧНК – пур. Ун тавра кашни ушкăн, пĕрлĕх, юхăм, автономи, ансамбль хăйĕн ятне, ĕçне-хĕлне кăтартса пĕрлешмелле», – терĕ Виталий Петрович.

Паллă ĕнтĕ, Раççейри политика тата экономика пурнăçĕнчи улшăнусенчен Чăваш Ен аякра тăрса юлаймĕ. Çавăнпа та съездра политика ыйтăвĕсем тавра калаçассинчен те пăрăнса иртеймĕн. Ку шухăшсене ЧНК вице-президенчĕ **А.П. Леонтьев** пĕлтерчĕ. Наци республикисен прависене сыхласа хăварма, малалла аталанма майсем уçса парас тĕлĕшпе делегатсем хайсен сăмахне калаççех.

ЧНК ертӳçисем журналистсен ыйтăвĕсене хуравларĕç, съезд ĕçне объективлă та тĕрĕс çутатма сĕнчĕç.

Валентин ПЕТРОВ.
*«Хыпар», 16.06.2000, 104№.*

## Геннадий АРХИПОВ: «КОНГРЕСС ĔÇĔ – ХАЛĂХ ĔÇĔ»

*Чăваш наци конгресĕн штаб-хваттерĕнче хĕрӳ ĕç пырать: çине-çинех телефон шăнкăртатать, пĕри тухса кайса ĕлкĕреймест – тепри пырса кĕрет. Пуринпе те калаçмалла, çак çамантрах татса памалли ку е вăл ыйтăва пăхса тухмалла, çав хушăрах спонсорсем çинчен те манмалла мар. Кашни сехет, кашни минут шутра – çĕртмен 21-мĕшĕсенче Чăваш наци конгресĕн IV Аслă пухăвĕ уçăлмалла-çке. Апла пулин те Конгресс президенчĕ* ***Г.Н. АРХИПОВ*** *пирĕн ыйтусене хуравлама вăхăт тупрĕ. Хăйĕн сăмахне вăл юлашки çулсенче мĕн тунинчен пуçларĕ:*

**– Йĕркеллĕ ĕçлеме чи малтанах штаб кирлĕ, ăна телевизорпа, компьютерпа, ксерокспа тивĕçтерес ыйтăва татса патăмăр. Çапах та пирĕн штабăн 3 пӳлĕмĕ тивĕçлĕ вырăнта лармасть, ахальтен мар ĕнтĕ Ехрем хуçа çуртне илес тесе сахал мар вăй хутăмăр. Ăна хапсăнакан бизнесменсем чылай пулчĕç, апла пулин те çак çурта Чăваш халăх керменĕ тумалли майсене палăртрăмăрах. Тĕп тĕллевсенчен пĕри – штаб Чăваш наци конгресĕн тĕп центрĕ пулмалла. Халĕ пирĕн ал айĕнче телефон пур, хăйсене евĕрлĕ система йĕркелесе ятăмăр: информаци пама та, илме те пулать. Аппарат тытма тăрăшатпăр: унта пурĕ 6 çын, вĕсенчен тăваттăшĕ Чăваш халăх çуртне тăвас ыйупа ĕçлет.**

Эпир, кунти чăвашсем, пĕр-пĕрне асăрхамасан та пултаратпăр. Конгресс тĕллевĕ – аякри чăвашсене пĕрлештересси, чăваш наци культура автономийĕсене туса хурасси. Халь çавăн пек автономисем Саратов, Мускав, Чĕмпĕр тăрăхĕсенче те, Тутарстанра та, ытти регионсенче те ĕçлеççĕ. Штабсăр пуçне «Янра, юрă» эстрадăпа фольклор ушкăнĕ йĕркелерĕмĕр, ăна Чăваш халăх артисчĕ Иван Христофоров ертсе пырать. Тĕрлĕ тĕл пулусем, мероприятисем ирттернĕ. Беларуçе, Молдовăна делегацисем кайнă. Чылай çĕрте – Анат Камăра, Пушкăртстанра, Чĕмпĕрте – чăваш пĕрлĕхĕсем 10 çул тултарнине уявларăмăр. Икĕ çул çурă хушшинче 160–170 тĕл пулу ирттернĕ. Анат Камăра – чăваш гимназийĕ, Пушкăртстанра чăваш театрĕ уçни аса килет. Нумай ыйтăва татса пама ЧР Президенчĕн Администрацийĕ, ЧР Культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерстви пулăшаççĕ.

**– Аслă пухăва хатĕрленсе çитнĕпе пĕрех пулĕ? Миçе делегат килесси паллă-и?**

– Аякри чăвашсенчен 150 делегата яхăн килмелле. Пуху ĕçне хăнасемпе пĕрле пурĕ пин ытла çын хутшăнмалла. (Геннадий Николаевичпа калаçнă хушăрах Самартан шăнкăравларĕç, пурĕ 33 çын килессе пĕлтерчĕç.)

**– Пухура хускатмалли тĕп ыйтусене палăртса хунă-тăр?**

– ЧНК президенчĕн тата ревизи комиссийĕн отчечĕсем пулаççĕ. Василий Димитриев профессор чăваш кун-çулĕ çинчен доклад туса парĕ. Иккĕмĕш кунне аякри чăвашсен ĕçлĕ çыннисем – усламçăсем секцисепе пайланса ĕçлĕç. Хĕрĕх ытла усламçăна съезд ĕçне хутшăнтарма палăртнă. Вĕсен хушшинче «Тав» фирмăн тĕп директорĕ Александр Капитонов, «Парта» президенчĕ Валерий Павлов...

**– ЧНК IV Аслă Пухăвĕнчи тĕп ыйту мĕн çинчен пулĕ-ши?**

– Чăваш пуласлăхĕ пурне те пăшăрхантарать. Хамăрăн сĕнӳсене правительствăна тăратмалла. 2 миллионлă халăхăн 50 проценчĕ республика тулашĕнче пурăнать. Республикăри чăвашсен 50 проценчĕ – хулара, апла пулсан 25 проценчĕ çеç чăвашла вĕренсе калаçать. Тĕпрен илсен пухура çак ыйтăва малти вырăна кăларасшăн. Чĕлхе пулмасан халăх пулмасть. Чĕлхе – халăхăн тĕп никĕсĕ.

**– Чăваш чĕлхи пирки эпир нумай калаçатпăр-ха. Анчах та чăваш чĕлхи анинче ĕçлекенсен сумĕ те, хисепĕ те, укçи-тенки те çук. Тĕслĕхрен, паянхи кун «Хыпар» хаçатра ĕçлекен çамрăк специалистсем пĕр-пĕр общежитире пӳлĕм те пулин илеймеççĕ, Шупашкарта прописка та çук вĕсен. Чăваш ăслăлăхĕнче вăй хуракансен те, ялтан килнĕ чăваш çамрăкĕсен те çав нуша. Шупашкар вĕсемшĕн тăван хула мар, ама çури пулса тăрать. Çак ыйтăва та хускатмалла мар-и Чăваш халăх пухăвĕнче?**

– Паллах, ку питĕ кăткăс ыйту. Трактор завочĕ çĕнĕрен ĕçлесе кайрĕ – рабочисене пурăнма вырăн çук. Общежитисене сутса пĕтерни чăрмантарать. Предприятисен хăйсен общежитисем пулмалли ĕлĕкхи системăна каялла тавăрмалла. Чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсене 15 процент хушса тӳлемелли çинчен нумай калаçнă, анчах та Патшалăх Канашĕнче çак ыйтăва тĕпрен ăнланса илме пултараймарĕç. Наци политикине патшалăх шайĕнче тытса пымалла. Чăваша курайман çынсем пурах пуль тесе шутлатăп. Ытти халăхсене хамăра кӳрентерме памалла мар. Республикăра пире кӳрентереççĕ тесе те шутлатăп. Çĕнетӳ вăхăтĕнче чăвашсем влаçа кĕркелерĕç, халь çак юхăм пăчланчĕ. Никамран та ыйтса тăмаççĕ – пĕр-пĕр района тытаççĕ те чăвашла пĕлмен пуçлăх ярса параççĕ.

**– Çав хушăра Чăваш наци конгресĕ шыв сыпнă пек ларать.**

– Чăнах та, пире пĕр хушă республика тулашĕпе ытларах ĕçлетĕр тесе айăпларĕç. Юлашки вăхăтра республикăри кашни районта конференцисем ирттертĕмĕр, ЧНК уйрăмĕсене туса хутăмăр, кашни районтах ЧНК представителĕсем пур. Регионсенче те пур вĕсем: Чĕмпĕрте О. Мустаев, Тутарстанра – А. Иванов, Мускавра – А. Волков. Капла пире

ĕçлеме çăмăлрах. Икĕ çул хушшинче ЧНК структурине йĕркелесе çитертĕмĕр.

**– Каçарăр та, Чăваш наци конгресне туса хунăранпа 2 çул мар, сакăр çула яхăнах иртрĕ мар-и? Е унччен унăн тытăмĕ пулман та – ячĕ çеç кĕрленĕ-и?**

– Пулнă, анчах та пур çĕрте те мар. Хăй вăхăтĕнчи, малтанхи энтузиазм, шел те, пăчланнă. Паллах, ĕçлекенсем те пулнă. Тĕслĕхрен, Муркаш районĕнче – Евгений Ерагин, Патăрьел районĕнче – Иван Пахомов... Халь конференцисем йĕркелесе ЧНК структурине тĕпрен çĕнетрĕмĕр.

**– 96-мĕш çулсенче е кăшт маларах та ЧНК фончĕн йĕркелӳ пухăвĕнче пулма тӳр килнĕччĕ. Унта самай сумлă çынсем пуçтарăннăччĕ: усламçăсем те, патшалăх çыннисем те. Халь вара темшĕн çав фонд пирки кикам та нимĕн те шарламасть.**

– Фонд ертӳçи Константин Петрович Портнов пур, çапах та хальлĕхе фонд ĕçлесе кайрĕ теме май çук-ха.

**– Аслă пухăвăн 2-мĕш кунĕнче усламçăсем сскцисене пайланса ĕçлесси пирки асăнтăр. Мĕн çинчен калаçма палăртнă вĕсем?**

–Хăйсен экономика çыхăнăвĕсене, услам ĕçне аталантарасси пирки.

**–Шăп та лăп çакăнта ЧНК фондне çирĕплетесси, тĕреклетесси пирки сăмах хускатмалла мар-ши?**

– Калаçмаллах. ЧНК III Аслă пухăвĕ хыççăн пĕтĕм чăвашсен ĕçлĕ çыннисем пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлеме тытăнчĕç. «Оренбурггазпром» тĕп директорĕ Василий Васильевич Николаев Самар бизнесменĕсемпе пирĕн пухура тĕл пулса калаçрĕ. Тĕрĕссипе, вĕсем эпир пулăшнипе пĕр-пĕринпе хутшăнса ĕçлеççĕ. «Чуваши» чаплă кĕнеке 30 пин экземплярпа тухнинче пирĕн тӳпе те пур.

**– Тĕрĕссипе, Чăваш наци конгресĕн спонсор шыраса мĕскенленсе çӳремелле те мар пек. Ура çине тăма вăхăт мар-и?**

– Шел, хальхи йывăр лару-тăру пире те пусахласа тăрать. Фонд тусан, паллах, çăмăлрах пулĕччĕ. Патшалăхран укçа ыйтмалла мар пирĕн, никама пăхăнман организаци пулмалла. Конгресс шайĕнче бизнеспа ĕçлемелле. Тăкак нумай: телефоншăн, пӳлĕмсемшĕн тӳлемелле, компьютер юсаттармалла... Уявсем иртеççĕ, вĕсенчен те юлмалла мар. Ĕмĕрĕпе чăвашлăхшăн ĕçлесе ирттернĕ çын патне парнесĕр епле кайăн? Паллах, шухăшсем нумай. Пĕрремĕшĕ – çак çурта юсаса пĕтересси. Предприяти ертӳçисенчен пулăшу ыйтмалла. Конгресс ĕçĕ – халăх ĕçĕ. Ун ĕçне уйрăм çын тăваймасть. Шел те, нумай предприяти пуçлăхĕ хăйĕн интересĕпе çеç пурăнать, пĕр пус та парасшăн мар. Виçĕ-тăватă пин тенкĕ кăларса хурасси вĕсемшĕн ним те мар-çке. Пĕтĕм чăваш халăх шăпи вĕсенчен килет. Тĕслĕхрен, «Белый Аист» фирма ертӳçи Анатолий Иванович Лукьянов: «Эп Конгреса пулăшсан мана чăваш Турри пулăшатех», – тет. Пурин те çавăн пек пулмалла мар-и? Халăха çапла чĕнсе калас килет: «Енчен те кашни чăваш пĕр тенкĕ те пулин парса пулăшсан, мĕнле вайлă организаци пулмалла...»

**– Эсир час-часах ЧНКна пулăшасси пирки калатăр. ЧНК хăй пулăшакан организаци пулмалла мар-и? Тĕслĕхрен, эпĕ сирĕнтен Н.И. Ашмаринăн йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ хĕрне пулăшма ыйтнăччĕ. Май çук терĕр...**

– Пулăшнисем пулнă, пулман мар. Тĕслĕхрен, Пушкăртстанри чăваш театрĕ пирки ыйту лартрĕç – пулăшрăмăр. Тутарстанра чăваш наци лицейĕ уçрăмăр. Тепĕр чухне кĕнекесем сутăн илсе пулăшатпăр. Ваттисене укçа-тенкĕпе пулăшни те пулнă.

**– Камсене пулăшнă?**

– Ятран асăнма лайăх мар, чăнах та пулăшнă. Ак халь «Самар Ен» ушкăна йышăнатпăр. Вăл та тăкаксăр пулмасть-çке.

**–Паянхи кун эсир ЧНК сумĕ пуррине туятăр-и?**

– Сумĕ пур. Ехрем хуçа çуртне тĕпрен юсама сахалтан та 2 миллион тенкĕ кирлĕ. Пулăшу ыйтсан пирĕнпе йĕркеллĕ калаçаççĕ, 30–40-шер пин паракансем те тупăнчĕç. Ют çĕр-шывсене те кайса килтĕмĕр. 45 çынран тăракан делегацие Раççейĕн Германири (Берлин) посольствинче йышăнчĕç. Бизнесменсем çыхăнусем йĕркелеме ыйтаççĕ, Конгресс пулăшнипе аякран инвестици килет.

**– ЧНК Аслă пухăвĕн сĕнĕвĕсене ЧР Правительстви умне тăратсан ăна епле пурнăçланине кам сăнаса тăрĕ?**

– Ăна хамăрăн пурнăçламалла, май пур тарăн тăрăшмалла. Нумай ыйту укçа-тенкĕпе çыхăннă. Чăваш халăхне патшалăх шайĕнче хӳтĕлес ыйтупа пире ЧР ял хуçалăх министрĕ П.В. Ивантаев чылай пулăшать. «Хыпар» коллективĕ те пирĕн ĕçрен айккинче тăмасть. А.П. Хусанкай ЧНКна пĕтĕм тĕнче шайĕнче тытса тăрать.

**– Нумай ĕç хамăртан, çав хушăрах укçа-тенкĕрен те килет тенĕрен – кăмăллах мар çак ыйту çуралчĕ. ЧНК хыпарĕсене чăваш халăх хаçатне чăвашла мар, вырăсла (!!!) çитерессi те укçа-тенкĕпе çыхăннă-и?**

– Сирĕн пата пирĕн пресс-секретарь вырăсла çырнине эпĕ пĕлмен те. Ку, паллах, вырăнлă мар. Пирĕн, тĕрĕссипе, пĕр пресс-секретарь кăна пулмалла мар, кашни хаçатрах хамăрăн представительсем ĕçлемелле. Вĕсен чăвашла та, вырăсла та лайăх пĕлмелле.

**– Аслă пухура хăнăхнă йăлапа юрă-ташă та пулĕ-и?**

– Мускавран «Туслăх» ансамбль килет, Самартан та, ытти çĕртен те килĕç. Съезд хупăннă хыççăн хăйсен пултарулăхне кăтартма вĕсем районсене кайĕç. Çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарти Сăра театрĕнче ятарлă кăтарту пулĕ.

**– Аслă пуху ĕçне тухăçлă ирттерме вăй-хал, чăтăмлăх сунатăп, уявра алтăр çĕклесе савăнма май та, тивĕç те пултăр.**

Римма ПРОКОПЬЕВА калаçнă.
*«Хыпар», 20.06.2000, 105№.*

## ЧНК IV АСЛĂ ПУХĂВĔН ЙĔРКИНЧЕН (РЕГЛАМЕНТĔНЧЕН)

**1.3.** Канашлу сассиллĕ кирек хăш çын пирки кирек хăш делегаци ертӳçи сивлесе каласан Пуху ăна ларăва кĕртесси-кĕртмессине сасăласа татса парать.

**2.3.** Аслă пуху ларăвĕсем ирĕклĕн те уççăн иртмелле. Хиврелĕх сиксе тухсан пуху хупă лару ирттерме пултарать. Хупă ларăва тулли сасăллă конгрессменсем тата ятарласа чĕннĕ çынсем хутшăнаççĕ. Хупă лару йышăнăвне ун хыççăнхи уçă ларура пĕлтереççĕ.

**2.5.** Конгрессменсемпе хăнасен Пуху йĕркипе çыхăннă тата ытти сĕнĕвĕсене, асăрхаттарăвĕсене çыруçлăха (секретариата) çырса памалла. Тавлашу сиксе тухсан икĕ енчен те пĕрер çынна кĕскен итленĕ хыççăн ыйтăва сасăлама тăратмалла.

**4.1.** Тĕп доклад 30 минутлах, çум докладсем 15 минутлăх. Тухса калаçакансене пĕрремĕш хут 7 минут, иккĕмĕш хут 3 минут памалла.

**4.4.** Пухури çын ертӳçĕ ирĕк памасăрах тухса калаçма е кăшкăрма тытăнать пулсан ăна сасăламасăрах Пухуран ятарлă хурал кăларса ярать.

**4.5.** Тухса калаçакан делегат сӳтсе явакан ыйтуран пăрăнса сăмахлать тата пĕрре асăрхаттарнă хыççăн тĕп ыйту патне таврăнмасть пулсан пуху ертӳçи ăна калаçма чарать.

**4.6.** Пухури кашни конгрессмен хăйсене тивекен тиркев пирки çырса е каласа лару вĕçĕнче кĕске тӳрлетӳ, ăнлантару пама пултарать.

### ЧНК IV АСЛĂ ПУХĂВĔН ÇЫРУÇЛĂХĔ (СЕКРЕТАРИАЧĔ)

1. **Алексеев Андрей Алексеевич,** журналист, çыравçă (Шупашкар)
2. **Афанасьева Екатерина Романовна,** ЧПУ вĕрентӳçи
3. **Васильева Елизавета Георгиевна,** Çĕнĕ Шупашкарти «Шордан» ентешлĕх ертӳçи
4. **Власова Роза Анатольевна,** журналист («Çамрăксен хаçачĕ»)
5. **Ефимова Надежда Сергеевна,** вăтам шкул вĕрентӳçи (Анат Кама)
6. **Иванова Ирина Васильевна,** ача пахчин сапăрçи (Шупашкар)
7. **Иванов Александр Кириллович,** Тутарстанри «Сувар» хаçатăн тĕп тĕременĕ (редакторе).
8. **Карпов Валентин Иванович,** Чăваш тавра пĕлӳçисен пĕрлĕхĕн яваплă çыруçи (Шупашкар)
9. **Киргизова Людмила Зиноновпа,** професси шкулĕн вĕрентӳçи (Шупашкар)
10. **Медведева Ангелина Васильевна,** гимнази вĕрентӳçи (Шупашкар)
11. **Ромашкин Валериан Федорович,** Чĕмпĕрти «Канаш» хаçатăн тĕп тĕременĕ
12. **Сачкова Людмила Николаевна,** радиожурналист, çыравçă
13. **Симаков Виктор Егорович,** Сызраньри чăваш пĕрлĕхĕн ертӳçи
14. **Сосаева Алина Аркадьевна,** тĕпчевçĕ (ЧПГĂИ)
15. **Тимуков Александр Николаевич**, тĕпчевçĕ (ЧПГĂИ)

### ЧНК IV АСЛĂ ПУХĂВĔН МАНДАТ УШКĂНĔН ЙЫШĔ

1. **Абрамов Валентин Александрович,** Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ (Шупашкар)

**2. Анисимов Юрий Васильевич,** «Татмелиораци» пĕрлешӳ директорĕ (Хусан)
**3. Кузнецов Михаил Фадеевич,** Тюмень облаçĕнчи наци культурисен центрĕн директорĕн çумĕ, «Хамăр ял» чăваш пĕрлĕхĕн ертӳçи
**4. Моисеев Петр Васильевич,** «Халăх шкулĕ» журналăн тĕп тĕременĕ (Шупашкар)
**5. Тарасов Иван Григорьевич,** Пушкăртстанри чăвашсен пĕрлĕхĕн явапл çыруçи

### ШУТЛАВ УШКĂНĔ

**1. Альгинов Виктор Николаевич**, Красноярскри Чăваш наци культура автономийĕн ертӳçи
**2. Васильев Валерий Михайлович**, Муркаш районĕн вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ
**3. Григорьева Роза Наумовна,** ЧР Кĕнеке палатин директорĕ
**4. Моисеев Виталий Тимофеевич**, вăтам шкул вĕрентӳçи (Шупашкар районĕ)
**5. Степанцев Николай Степанович,** Хусанти чăваш пĕрлĕхĕн ертӳçи
**6. Осипова Надежда Петровна**, Самар облаç администрацийĕн наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен ăсти
**7. Пахомов Иван Иванович,** Чăваш наци конгресĕн Патăрьелĕнчи уйрăмĕн ертӳçи

### ТĔРЕМЕНЛĔХ (РЕДАКЦИ) УШКАНĔ

**1. Архипов Геннадий Николаевич**, ЧНК элтеперĕ (президенчĕ)
**2. Викторов Олег Николаевич**, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, ЧПУ проректорĕ
**3. Еграшкин Анатолий Алексееви,** Чĕмпĕр чăваш наци культура автономийĕн явапл ă çыруçи
**4. Иванов Владимир Александрович**, ЧР НАНИ явапл ă çыруçи, ЧПУ профессорĕ
**6. Кибеч Анатолий Ильич,** çыравçă
**7. Краснов Петр Степанович**, ЧР Президенчĕн администрацийĕн ертӳçи – Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ
**8. Кондратьев Алексей Александрович**, академик, тавра пĕлӳçĕ (Ĕпхӳ)
**9. Леонтьев Алексей Петрович**, «Хыпар» хаçатăн тĕп тĕременĕ
**10. Лукианов Николай Егорович,** Чăваш аталану партийĕн ертӳçи, ваккат
**11. Мульдияров Петр Ярушкович,** тухтăр, тĕпчевçĕ (Мускав)
**12. Никитин Владислав Леонидович**, Чăваш халăх çурчĕн юсавçи, пайтаçă (Беларуç)
**13. Смолин Анатолий Семенович,** ЧР Президенчĕн пулăшуçи, сăвăç.
**14. Станьял Виталий Петрович**, ЧНК Аслă пухăвĕн пашханĕ, тĕпчевçĕ (Шупашкар)
**15. Хусанкай Атнер Петрович,** ЧНК хисеплĕ элтеперĕ
**16. Цыпленков Олег Михайлович**, Чăваш çамрăкĕсен «Сăвар» пĕрлĕхĕн ертӳçи

## ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ЧĂВАШСЕН IV АСЛĂ ПУХĂВНЕ (ЧНК ФОРУМНЕ) ИРТТЕРМЕЛЛИ ЙĔРКЕ

**2000, çĕртме, 20, ытлари кун**

ЧНК Тĕп ĕçтăвкомĕ (Володарский ур., 5). Хăнасемпе делегатсене кĕтсе илни, регистрацилени.
**18.00-19.00** – Чăваш халăх çуртне (Володарский ур., 10) пиллени
**19.30** - «Асран кайми...» ятлă Асăну Юпи патĕнче ваттисене асăнни

**2000, çĕртме, 21, юн кун, Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ**

**8.00** – Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ умĕнче кире пуканĕ йăтакансен кăтартуллă турнирĕ
**8.00-8.45** – Аслă пуху делегачĕсемпе хăнасене регистрацилени

Делегаци ертӳçисен тата йĕркелӳ комитечĕн пĕрлехи канашлăвĕ (В.П. Станьял ирттерет)
Фойесенче пултарулăх ушкăнĕсемпе эстрада çăлтăрĕсем кĕске кăтартусем тăваççĕ. Суту-илӳ тата куравсем

**9.00-9.18** – Кĕрекене Аслă пуху президиумĕ вырнаçать. Пил саманчĕ. Ваттисен сăмахне Г.Н. Волков академик калать. Конгресс ура çине тăрса Чăваш наци Гимнне – «Алран кайми аки-сухи» – юрлать
**9.18-9.25** – ЧНК Президиумĕ, Ман Канашĕ тата Ваттисен хуралĕ ячĕпе Пухăва кĕске сăмах каласа ЧНК Аслă пухăвĕн Председателĕ В.П. Станьял уçать
**9.25-9.35** – Чăваш Республикин Президенчĕн администрацийĕн ертӳçи – Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ П.С. Краснов сăмах илет
**9.35-9.45** – Аслă пуху ĕç органĕсене суйлама пуçлать
**9.45-10.00** – Аслă пуху кун йĕрки çирĕплетет
**10.00-10.05** – Асăну саманчĕ. Пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлнă конгрессменсене пуç тайни. ЧР Патшалăх ялавĕ, И.Я. Яковлев, Çеçпĕл Мишши, К.В. Иванов, Çĕнтерӳ палăкĕ умне чечек çыххисем хума кайни
**10.05-10.35** – Аслă пуху ертӳçи ЧНК президентне Г.Н. Архипова сăмах парать. Доклад.
**10.35-10.45** – Чăваш Республикин Президенчĕн Н..В. Федоровăн сăмахĕ
**10.45-1 1.00** – Тăхтав
**11.00-11.10** – Ревизи комиссийĕн шайлавĕ
**11.10-11.25**–чăваш халăхĕн историйĕпе шăпи. В.Д. Димитриев академик доклачĕ.
**11.25-11.40** – Чăваш чĕлхин, культурин тата шкул вĕрентĕвĕн çивĕч ыйтăвĕсем. И.А. Андреев академик сăмахĕ
**11.40-11.55** – Чăваш хаçат-журналĕ, кĕнеки XXI ĕмĕр умĕн. ЧНК вице-президенчĕн А.П. Леонтьевăн сăмахĕ
**11.55-12.10** – Тĕнчери чăвашсен XXI ĕмĕрти пурлăх-ырлăх хутшăнăвĕсен ĕренки. В.Л. Никитин («Нарспи» фонд ертӳçи)
**12.10-12.25** – Чăваш халăхĕн сывлăхне хавшатаканни: ĕçкĕ, йĕркесĕрлĕх, наркомани. А.Н. Трофимова (Çĕнĕ Шупашкарти ача-пăча сывлăхне чĕртекен центр пуçлăхĕ)
**12.25-12.40** – Мандат комиссийĕн пĕлтерĕвĕ
**12.40-12.50** – Чĕмпĕр делегацийĕн сăмахĕ
**12.50-13.00** – Тутарстан делегацийĕн сăмахĕ
**13.00-13.10** – Пушкăртстан делегацийĕн сăмахĕ
**13.10-13.20** – Самар делегацийĕн сăмахĕ
**13.20-13.30** – Тюмень делегацийĕн сăмахĕ
**13.30-13.40** – Мускав делегацийĕн сăмахĕ
**13 40-13.50** – Питĕр делегацийĕн сăмахĕ
**13.50-14.00** – Линнарт Мяялль - ТТХО тĕп секретарĕн çумĕ (Ээсти [Эстони], Тарту хули)
**14.00-15.00** – Кăнтăрлахи апат
**15.00-15.30** – Çырăннисем калаçни
**15.30-17.30** – Чăваш наци конгресĕн ертсе пыракан органĕсене суйлани
**17.30-19.00** – Резолюцисем йышăнни
**19.00-20.30** – Концерт
**20.30** – Каçхи апат

**2000, çĕртме, 22, кĕçнерни кун. Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ**

**9.00-10.00** – Аслă пуху делегачĕсен, Мăн Канаш, Тĕп ĕçтăвкомпа Президиум членĕсен, Ваттисен хуралĕн пĕрлехи ларăвĕ
**10.00-12.00** – Секцисен ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕлхе, истори, культура ыйтăвĕсен секцийĕ (ертӳçи – В.А. Иванов академик); экономика, бизнес, финанс секцийĕ (ертӳçи – В.Г. Павлов пайтаçă); журналистсен, çыравçăсен, вĕрĕнтӳçĕсен секцийĕ (ертӳçисем – «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ А.П. Леонтьев , В.Г. Кервен сăвăç, «Тăван чĕлхе» пĕрлешӳ ертӳçи А.В. Медведева)
**12.00-13.00** – Секцисен пĕрлехи пĕтĕмлетӳ ларăвĕ. Резолюцисем йышăнни
**13.00-13.30** – Чăваш наци конгресĕн IV Аслă пухăвне вĕçлени
**13.30-14.30** – Кăнтăрлахи апат
Пушă вăхăтра аякран килнĕ делегатсемпе хăнасем Шупашкарпа, районсемпе, хăйсен историллĕ тăван вырăнĕсемпе паллашаççĕ

**2000, çĕртме, 23, эрне кун**
**10.00** – «Раççей хăмлипе сăри–2000» курав
**14.00** – Регион делегацийĕсен пуçлăхĕсене Çĕнĕ Шупашкарпа паллаштарни
**16.00** – Сăра театрĕн «...Неподвластная времени...» куравĕ («Чувашия-Экспо»)
**18.00** – Халăх пултарулăхĕн «Атăлçи çăл куçĕсем» уявĕ

**2000, çĕртме, 24, шăмат кун. Республика кунĕ – чăваш халăхĕн аслă уявĕ**

*«Хыпар» кĕнеки», 20.06.2000, 3(47)№ // «Хыпар», 20.06.2000, 105№.*

## ТĔНЧЕРИ МĔН ПУР ЧĂВАША ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хурăнташсем, тăвансем, пĕлĕш-тантăш! Хамăрăн йăх-несĕлĕн тĕнче тăрăх сапаланнă тĕпренчĕкĕсем!

Çакăн пек аслă пухусене пăлхавлă вăхăтсенче халăхăмăр ĕлĕк-авалах тата XX ĕмĕр пуçламăшĕнче тăтăшах иртгернĕ. Каçалхи çĕртмен 21-22-мĕшĕсенче Чăваш наци конгресĕн IV Аслă пухăвĕ иртет. Халăх ăс-хакăлне упракан тăван çырулăха, тĕне, ăсчахлăха тăшман тĕпрен касса татма тăрăшнă, çĕр-шыври пĕтĕм пурнăç йĕрки вуçех ылмашăннă чухне халăхпа пухăнса канаш тума вăхăт çитни уççăнах курăнса тăрать. Çынсем хăйсен хуçалăхри, экономикăри, политикăри, патшалăхри çул-йĕрне ăнланса илмесĕр çĕнĕ йĕркеленӳ пулма пултараймасть. Халăхăн ытларах пайĕ пĕр шухăш-ĕмĕт тытса, пĕтĕм этемлĕх ырламалла пархатарлă тĕллевпе килĕшӳ тупса аталансан кăна чăваш халăхĕ хăйсене «ЧĂН ЧĔРĔЛТĔМ» тесе калама пултарĕ.

Авалхи чăваш халăхĕ тĕнчери пĕтĕмĕшле çĕнелӳ хумĕнчен ниепле те пăрăнса юлма пултараймасть. Хаяр шăпа чăваш çыннисене тĕнче тăрăх сапаласа янă, çуралса ӳснĕ çĕр-шывран çуррине ытла хӳтерсе кăларнă, наци культурин çыхăнăвĕсене татнă. Тулай чăвашсем хăйсен пĕрлĕхне, наци сăн-сăпатпе çухатас çул çине лекнĕ. Вĕсем наци ăс-хакăлпа культура пурнăçне ырлăх-пурлăх кӳме пăрахнă, тăван халăх йăли-йĕркине манса пыраççĕ, куç умĕнчех тымарсăр тĕрке курăк пек тăрса юлаççĕ, тăван çĕр-шывсăр, çырулăхсăр, ятсăр-сумсăр, чыссăр çынсем пулса

каяççĕ. Çакă пирĕн чуна касса ыраттарать. Çапах та юлашки çулсенче чăвашсем вăранни-тапранни пире вăй кÿрет.

Кашни халăхах, çĕр çинчи мĕн пур чĕрĕлĕх пекех, йăх тăсма, малалла аталанма тăрăшать. Аталанăвăн пурнăç тĕшши – ăрулăх сыпăнса пынинче. Малашлăха çухатнă харкам этем те, пĕтĕм халăх та сÿтĕлсе каять, хайне хăй сÿнсе пĕтет. Чăваш çынни ĕмĕрсен историйĕнче инкек-синкек, вăрçă-харçă, асап-пусмăр пайтах курнă. Чăтăмлăхпа ĕçчenлĕх, тирпейлĕхпе ăс-хакăл ăна пĕр туйăмпа чăмăртаса тăнă. Вăл хăйĕн никамăнни пек мар тĕнне, чĕлхине, йăли-йĕркине, тĕррипрешне, хутшăнусен тытăмне аталантарса пыма, паянччен упраса хăварма пултарнă. Çак пуянлăх еткерне иксĕлтерме юрамасть, ăна татах пуянлатса капăрлатасси, ăна çамрăксене вĕрентсе хăварасси çинчен питех те хытă шухăшламалла.

Чăваш Республики – чăваш халăхĕн культурине, чĕлхине, ăс-хакăлне, йăлисене аталантармалли, туптаса якатмалли пĕртен пĕр тăван çĕр-шыв, чăвашсен тĕнчери пĕртен пĕр патшалăхĕ. Чăваш халăхĕн малашлăхне çакăнта çеç çине тăрса упраса хăварма май пур.

Чăваш çĕрĕнче чăвашăнах йĕрке тумалла. Пирĕн пахчана аякран килсе сухаласа памĕç, пирĕн урам çÿп-çапне кÿршĕ халăхран килсе шăлса тасатмĕç. Кашни килĕн хуçи пур, кашни çĕр-шывăн ертÿçи пур, кашни халăхăн утаманĕ пур, унран вăйли – ирĕклĕх, пĕрлĕх.

Тата ваттисем пилленĕ тепĕр хăват пур: авалтан пыракан тачă тăванлăх çеç пире пăтравлă çак саманара пыл тăвакан вăйлă вăлле пек килĕштерсе ĕçлеме пулăшĕ.

Тăван-хурăнташ! Пирĕн халăх хамăр республикăра та, ытти çĕрсенче те ытти халăхсемпе хирĕлсе, ыттисене пусмăрласа е ыттисене пăхăнса пурăнман. Чыслăх, килĕшÿлĕх, танлăх саккунĕсене пире мăн асаттекукаçисем çĕр-пин ĕмĕрлĕхе парса хаварнă. Çак саккунăн пурте пĕлекен пĕр тивĕçне – «Чăваш ятне ан çĕрт!» тенине – паян пирĕнтен самана хăй ыйтать. Тăрăшăпăр, çĕртмĕпĕр.

Чăвашсем! Тăван çĕре аякри йăхташăмăрсем делегат пулса уява йышлăн килеççĕ. Вĕсемпе пĕрле делегата суйланман тăванăр-хурăнташăрсене те хăвăр пата хăнана чĕнме ан манăр. Ан тив, республикăри кашни хуçалăхра, учреждениre, организацире, хулара, ялта, шкулта, клубра, урамра, çемьере Малашлăх, Тăванлăх, Асăну уявĕ пултăр.

Чăваш ачи, сассуна пар!

Чаваш наци конгресĕн Президиумĕ.
*«Хыпар» кĕнеки», 20.06.2000, 3(47)№//«Хыпар», 20.06.2000, 105№.*

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ – ТĔНЧЕ УÇÇИ

**(хальхи вăхăтри цивилизаци аталанăвĕнчи чăваш ăс-хакăлĕн вырăнĕ)**

Çирĕммĕш ĕмĕр вĕçĕнче пĕтĕм тĕнчипе пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ: пĕр енчен – уйрăм патшалăхсем, халăхсем е уйрăм çынсем хăйсене Аслă пĕрлĕхпе (универсумпа) «сыхăннă» тесе шутлаççĕ, кашни утăмра эпир информаци, культура, вĕрентÿпе пĕлÿ йĕркипе пĕр-пĕринпе çывăхланатпăр, тĕнче сывлăшĕ пирĕн чунăмăрсене кĕрет, эпир пĕр пек ăнлавсемпе, символсемпе, семиотикăсемпе усă куратпăр, вĕсене хăнăхатпăр; тепĕр енчен – кашни халăх хăйне тĕнчере пĕртен пĕр йыш пек, хăйĕн никамăнни пек мар тĕнче курăмне, чĕлхине, ăс-хакăл культурине питĕ çивĕч туйма пуçлать, сăвапла çак чунпа ăс-хакăл пахалăхĕсене упрас тесе тăрăшать, хăйĕн «эпĕлĕхне – эпирлĕхне – чăвашлăхне» çухатасшăн мар. Тĕп хирĕçÿлĕх кунта – мондиализм (глобализаци) аталанăвĕпе пĕрле наци ăнланулăхĕ, наци хăй тĕллĕнлĕхĕ вăй илни. «Çĕн ĕмĕр Аслă хапхинчен» халăхсем хăйсен ячĕпех, наци идеологийĕпех кĕресшĕн. Пĕтĕм тĕнчери халăхсене тăванла туйса, вĕсемпе танлă пулса халăхăмăр та чăмăртанасшăн.

Çак аталану тапхăрĕнче тăван чĕлхемĕр пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк, ирĕксĕрех унăн малашлăхĕ пирки шухăшлатăн. «Е ют чĕлхесем ÿснĕ майĕ...» (Çеçпĕл Мишши).

Хальхи чĕлхе пĕлĕвĕн никĕсне хываканĕ, аслă шухăшлавçă, чĕлхеçĕ Вильгельм фон Гумбольдт çапла çырнă: «Нация – духовная форма человечества, имеющая языковую определенность (...) Язык связан с формированием духовной силы нации». Эппин, эпир те, чăвашсем, этемлĕхĕн пĕр пайĕ пулса тăратпăр, çынна чи малтан чĕлхемĕрĕн вăрăм кун-çулĕ, унăн пултарăвĕн вăйĕ çирĕплетет. Халăхăмăрăн чунĕ, кăмăлĕ чĕлхемĕрте упранать, çавăнпа та чĕлхе аталанăвĕ урлă кăна эпир паянхи информаципе культура, ăслăлăхпа ÿнер шайĕнче пулма пултаратпăр, хамăрăн «чăваш тĕнчине» ытти халăхсен «тĕнчисемпе» (е «культура цивилизацийĕсемпе») çыхăнтарса Çĕнĕ ĕмĕрте чăвашăн Сăнне çутатма май тупатпăр.

Чăваш тÿре-шаралăхĕ тата культура, чăваш наци интеллигенцийĕ тата «хура халăх» пĕр-пĕрне паянхи кун мĕнле туяççĕ-ши? Кунта савăнмалли сахал. Чăваш политикĕсен ансăр ушкăнĕ хăйĕн пурнăçĕпе пурăнать, наци интеллигенцийĕн лару-тăрăвĕ япăхлансах пырать, «хура халăхăн» хăйĕн нуши-суйхи. Наци шухăшлавĕ, чăваш халăхĕн тĕллевĕсене хÿтĕлекен тата чăваш аталанăвĕн çулне уçакан çĕнĕ политика философийĕ хальлĕхе çуралман-ха, йĕркеленсе çитеймен пек. Хамăрăн Тăван çĕр-шыва эпир çĕнсе илеймерĕмĕр: тÿре-шаралăх халăхпа унăн тăван чĕлхипе сайра калаçать. Чăваш Республикин тĕп халăхĕн чĕлхине хисепе хурасшăн мар, наци культурин тĕп шăнăрĕ чĕлхе пулнине шута илмест, наци интеллигенцийĕнчен ютшăнать, укçатенке ытларах «çăмăл» (пасар тапхăрĕнчи) культурăна хывать. Наци культурипе тăван чĕлхе пĕлтерĕшне, чăваш тĕнче курăмне шута илмен «шалти» е «тулашри» патшалăх политики нихăçан та ăнăçлă пулас çук.

Эпир пурте Чăваш наци конгресĕн çыннисем, пирĕн тивĕç – тÿрешаралăх (Чăвашра, чăвашсем пурăнакан хать те мĕнле кĕтесре, Раççей шайĕнче) умĕнче, «хура халăх» умĕнче наци идеологийĕн «тĕп» (ыраттаракан) ыйтăвĕсене лартасси. Эпĕ хам енчен, ятăм-шывăмпа та, тĕнпе те чăн чăваш пулнă май, ЧНК IV Аслă пухăвĕ умне çичĕ (сăвапла, асамлă хисеп!) ыйту лартнă пулăттăм:

**1. Чăваш патшалăхĕн (республикин) шăпи: РФ тытăмĕнчи суверенлă реепублика-и е унăн ассоциациллĕ членĕ-и, е никама пăхăнман патшалăх, пĕтĕм тĕнчери право субъекчĕ-и?**

**2. Чăваш чĕлхин малашлăхĕ пур-и? Тĕнчери чĕлхесем (акăлчан, араб, вырăс, китай, нимĕç, француз тата ытти те) хушшинче чĕлхемĕр çухалмĕ-и?**

**3. Пĕтĕм тĕнчипе информаци пусăмĕ ÿснĕ май чăваш ăс-хакăлĕ ăна алла илме, çав хыпар «шăв-шавне» çăтса яма, ăна «хамăрлатма» вăй-хал çитерĕ-ши? Политикăпа информаци пасарĕнче чавашлăх çухалса пĕтес хăрушлăх пур.**

**4. Чăваш культури тĕнчере, Атăлпа Урал тăрăхĕнче пĕччен мар пулин те – мĕнле культура «тĕнчисемпе» (цивилизацисемпе) пирĕн тачăрах çыхăну тытмалла: тĕрĕк тăвансемпе-и, финн-угор кÿршĕсемпе-и, Европа «уçлăхне» тухмалла-и е тухăçалла тапранмалла-и? Ăçталла пирĕн çул?**

**5. Ăслăлăхăн тĕрлĕ «уйĕсенче» ĕçлекен чăвашсен хушшинче ăслă, тăнлă, анлă тавра курăмлă, çав вăхăтрах чăвашлăха тĕппипех парăннă çынсене хăçан курăпăр?**

**6. Чăваш сăмахлăхĕ, ÿнерĕ тата юрри-кĕвви, вĕсен ăстисем пĕтĕм илемĕпе, хÿхĕмлĕхĕпе тĕнче умне хăçан тухĕç, чăвашăн сăнне Çĕнĕ ĕмĕрте çак пахалăхсемпе хăçан вичĕç? Халĕ вĕсен лару-тăрăвĕ япăхланса пырать. Хамăр сăмаха, сăнара, юрра упраса хăвармасан, çÿллĕ шайра тытаймасан эпир тĕнчешĕн интереслĕ халăх пулмăпăр.**

**7. Тĕнче тăрăх сапаланнă чăвашсем хăçан пĕр-пĕринпе харкашма чарăнса, «ял» шайĕнчи шухăшлавне «кивĕ» ĕмĕрте хаварса, наци идеологине асра тытса, наци туйăмĕ çине таянса пурăнма тытăнĕç?**

Çĕнĕ ĕмĕр чăвашĕ тĕнче культурин еткерлĕхне, хăйсене  усăллă пĕлĕвне чĕлхен шалти вăй-хăватне хускатса, ăс-хакăлпа çĕнтерсе илтĕр! Çĕнĕ ĕмĕре чăвашăн пĕр шухăш тавра пĕрлешсе, чăваш Сăнне, Ятне, Чĕлхемĕре çухатмасăр пĕр наци пулса кĕресчĕ.

Пирĕн саманара тĕпрен урăхланса пынă халăхсен çĕнĕ историне чăнаш ячĕ ĕмĕрлĕх тасан кĕрсе юлтăр!

Атнер ХУСАНКАЙ, ЧНК хисеплĕ президенчĕ.
*«Хыпар» кĕнеки», 20.06.2000, 3(47)№//«Хыпар», 20.06.2000, 105№.*

## ХАЛӐХӐМӐР ПУРНӐҪӖНЧИ ЮЛАШКИ ПИН ҪУЛ ХУШШИНЧИ ЫРӐ ӖҪСЕМ

Чӑваш халӑхӗ несӗлсен тӑван чӗлхине, халӑх сӑмахлӑхӗнчи ӗмӗрхи ас тӑвӑмне, тӗн вӗрентӗвне, тӗрри-эрешне, карт ҫырӑвне упраса хӑварни.

Халӑх куҫса пынӑ тата хӑй пурӑннӑ ҫӗрсенче чӑваш сӑмахӗсемлӗ топонимсем хӑварни.

Аслӑ Пӑлхар тата Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхӗсене йӗркелени. Тутар-монголсемпе вырӑс кнеҫӗсен ҫарӗсемпе ҫапӑҫса паттӑрлӑх кӑтартни. Чӑваш халӑхӗ демократи ирӗкӗллӗ халӑх пӗрлешӗвӗн (общинӑн) йӗркине тытса пурӑнни.

Халӑхлӑх туйӑмне, ача-пӑча сӗрепне (шкулне) упраса хӑварни, сӑмахлӑх еткерлӗхне пуянлатса пыни.

Чӑваш халӑхӗ пӗрлӗх туйӑмне наци идейи вырӑнӗнче упраса хӑварни.

Ҫӗнӗ ҫырулӑх йӗркелесе яни.

XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнче Чӑваш патшалӑхӗн тытӑмне чӗртсе тӑратни. Чӑваш Республикинче халӑх влаҫне йӗркелесе пыни тата Элтепер (Президент) тытӑмне туни.

Чӑвашлӑх туйӑмне ҫӗнӗрен чӗртсе тӑратма пултарни.

### ПИН ҪУЛ ХУШШИНЧИ УСАЛ ӖҪСЕМ

Чӑваш халӑхӗн несӗлӗсен вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳреме тивни, чӑваш кӗнекине тӑшман ҫунтарса яни («ӗне ҫини»).

Пӑлхар патшалӑхӗ ют тӗнсен айне пулни, арканни, сапаланса кайни.

Авалхи ҫырулӑха, шкул тытӑмне, тӗнпе влаҫ, патшалӑхпа суд тата ҫар йӗркисене тытса пырайманни.

Атӑл тӑрӑхӗнче пурӑнакан халӑхсене тӗрлӗ енчен тапӑнса килнӗ тӑшмансем вӑрҫӑ вӑрҫтарса сӑтӑр туни.

Раҫҫей империйӗ вӑй питти арҫынсене ҫара илсе кайса вӑрҫӑсенче ҫапӑҫтара-ҫапӑҫтара, ҫӗнӗ хуласем тунӑ ҫӗрсене илсе кая-кая, лашман туса вӑрман кастара-кастара «вак» текен халӑхсен генофончӗсене хавшатни.

Раҫҫей империйӗ чӑвашсене хӑйсем пурӑнакан вырӑнсенчен хирсе-хӗссе кӑларса «ҫӗнӗ ҫӗрсене» куҫарни.

Тӗрлӗ халӑхсене, вӑл шутра чӑвашсене те, Раҫҫей империйӗнчи ют халӑхсен (инородецсен) шутне кӗртсе кӗпӗрнесем тӑрӑх вакласа тухни.

Чӑваш керемӗсене ҫунтарса пӗтерни, ҫӗнӗрен лартма чарни. Чӑваш ӑс-хакӑлӗпе чунлӑх управҫисене, апӑссене, юмӑҫсене, мӑчавӑрсене, вушнисене тата ыттине те пӗтерсе тӑкни.

Эрех ӗҫме хӑнӑхтарса халӑха хавшатни. Халӑха хӑйӗнчен пистерсе урӑх халӑха куҫарни. Халӑха элеклесе мӗскӗнлетме тӑрӑшни.

### ПАТТӐРСЕМПЕ АСЛӐ ҪЫНСЕМ

**Метте (Модэ)** – паттӑр ҫар пуҫӗ, элтепер тата патша.
**Алмуш, Аттил, Купрат, Челпир, Ылттӑнпик** – чӑвашлӑхшӑн кӗрешнӗ паттӑр патшасем.
**Вырӑх, Валӗм хуҫа** – чӑвашлӑха упрас текен пӳлевсем.
**Ылттӑнчеч, Пачмн, Упи паттӑр** – чӑваш халӑхне ҫӑлакансем.
**Кул Али, Сарри паттӑр, Мамич-Пертей** – кӗрешӳҫӗ-юрӑҫсем.
**Мехмет Челепи** ӑсчах.
**Охатер, Пайтул, Некей, Тойтеряк, Тутимӗр** – чӑвашсен чаплӑ кӗрешӳҫисем.
**Хура Эльмук, Эмине, Янтуш** – ҫырулӑх ҫухатнӑ хыҫҫӑнхи юрӑҫсем.
**И.Я. Яковлев** – чӑваш халӑхне ҫутта кӑларакан.
**М.Ф. Федоров, К.В. Иванов, Ф.П. Павлов, С.М. Максимов, И.С. Максимов-Кошкинский, А.А. Кокель** – ҫӗнӗ чӑваш культурине никӗслекенсем.
**Н.В. Никольский, Мӗтри Юман, Г.И. Комиссаров, Алексей Милли** – ҫӗнӗ саманари чӑвашлӑх ялавҫисем.

### ХАЛӐХА СӐТӐР ТӐВАКАНСЕМ

Параҫ-Пӑрантай.

Урасмет.

Чӗмпӗре Чӑваш Республикин тӗп хули тума чарнӑ большевиксем. Совет саманинче элеклесе чӑваш культура ӗҫченӗсемпе чӑвашлӑх ӗҫченӗсене пӗтерекенсем.

Ӗҫке ерсе анкӑ-минкӗлненекенсем.

Хальхи демократи меслечӗпе чӑваш культурине хӗсӗрлекенсем.

### ПАРХАТАРЛӐ ӖҪСЕМ

Чӑваш наци юхӑмӗ пуҫланни, мӗн пур чӑвашсен пӗрремӗш съездне Чӗмпӗрте тата ытти аслӑ пухусене Хусанпа Шупашкарта ирттерни тата тӗрлӗ ҫӗрте культура центрӗсем йӗркелени.

Чӑваш автономине туса хуни.

Н.И. Ашмарин хатӗрленӗ 17 томлӑ чӑваш чӗлхи словарӗ кун ҫути курни. Чӑваш Республикинче вӑтам тата аслӑ пӗлӳ илмелли вӗренӳ заведенийӗсем уҫни.

Пултарулӑх (творчество) союзӗсене туса хуни.

Ҫӗн йӗркелӳ саманинче наци юхӑмӗ чӗрӗлсе вӑйланни, ЧАП, Чӑваш хӗрарӑмӗсен, ҫамрӑкӗсен пӗрлӗхӗсем, Чӑваш нани конгресӗ, «Тураҫ» пӗрлешӳ, тӗрлӗ хуласемпе районсенче чӑваш общество- культура центрӗсем, ентешлӗхсем т.ыт. туса хуни.

Чӗлхе саккунне йышӑнса ҫирӗплетни.

Танлӑх саккунӗсем вӑя кӗрсе пыни (конституци, суверенитет, культура ҫинчен тата ытти те).

Чӑваш халӑхне хӑйӗн чӑн-чӑн авалхи тата вӑтам ӗмӗрсенчи историне тавӑрса пани.

### НАЧАРРИСЕМ

Халӑхӑн ӗмӗрхи тӗнӗ ҫухалас патне ҫитни, культурине ылмаштарни, тӑван чӗлхине манӑҫа хӑварса пыни.

Шкулсенче тӑван чӗлхене вӗрентессине, тӳре-шарана унпа усӑ курассине чарса пырса ун витӗмне хавшатни.

Чӗлхе саккунне пурнӑҫлама чӑрмантарса пыни.

Хальхи саманара пултарулӑх ӑстисене, вӗсен пӗрлешӗвӗсене, тӗпчевҫӗсене, тухтӑрсене, вӗрентӳҫӗсене патшалӑх пулӑшманни, пӑхманни тата пӗтерни.

Чӑваш халӑхне хӑйӗн ӗмӗртен килекен тӗнӗнчен пистерсе ытти тӗнсемпе арпаштарса пӑтратни.

### ВИҪҪӖМӖШ ПИН ҪУЛЛӐХРА ТУМАЛЛИ ӖҪСЕМ

Наци идейипе идеалӗсене тӗпе хурса пурӑнма пикенесси, чӑвашлӑх шухӑш-туйӑмне сарасси, патшалӑхпа халӑх тытӑмне ҫирӗплетесси, ӑс-хакӑл пурлӑхне пуянлатса пырасси.

Чӑваш халӑх тӗнӗпе тӗнче курӑмӗн, политикин, искусствипе культурин, хуҫалӑхӗн тата ыт. те. историйӗсене тӗплӗн тӗпчесе те йӗркелесе ҫырасси.

Чӑвашсен авалхи палӑкӗсене тӗпчесе тухасси, карт тата руна ҫырӑвӗсене малалла тишкересси, компьютер валли Х. Ачӑкос ушкӑнӗ йӗркеленӗ «яковлевит» (латин графики ҫинче) алфавита ӗҫе кӗртесси.

Чӑвашсен историлле вырӑнӗсене чӑнлавсемпе ҫирӗплетсе палӑртасси, вӑхӑчӗсемпе вырӑнӗсене тишкерсе хакласси, вӗсене чапа хурса упраса пурӑнасси.

Чӑвашсен кун тӑрӑмне (календарьне) чӗртесси, ӑна ӗҫе кӗртесси.

### ХАЛĂХПА ПАЛĂРТМАЛЛИ КУНСЕМ

**150 çул** – Алтайран анăçалла тухнă çул.

**524 çул** – Чăваш кĕнекине хӳтĕленĕ кун.

**1223 çул** – Тутар-монголсен çарне Сахча шывĕ хĕрринче çĕмĕрсе тăкни.

**1920 çул** – Чăваш патшалăх тытăмне чĕртни.

**1990 çул** – ЧР хăй тĕллĕнлĕхĕн саккунне йышăннă кун.

**Ака уйăхĕн 25-мĕшĕ** – Чăваш чĕлхи кунне паллă тăвасси.

**Кашни тăватă çулта пĕрре** – тĕнчери Олимп вăййисен юлашки кунĕнче – Улăп вăййисене ирттересси.

**Кашни çул пуç тайма çӳресси: çĕртме уйăхĕнче –**

**1-2 кунсем** – Пăлхар,

**3-4 кунсем** – Сăвар,

**4-6 кунсем** – Пӳлер.

**6-7 кунсем** – Ухинкел,

**7-8 кунсем** – Арапуç,

**9 кун** – Шупашкар, Ишек, Амаксар тата ыт.

### ÇУЛЛЕН-ÇУЛ ЙĔРКЕЛЕМЕЛЛИ УЯВСЕМ

Çĕнĕ çул (раштав, нартукан) – пуш уйăхĕн 21-мĕшĕ.

Ваттисене асăнмалли кунсем.

Паллă çынсен юпа уявĕсене (юбилейĕсене) палăртни. Акатуйсем, чӳксемпе чӳклемесем тата ыт. те.

### КУНСЕРЕН ТЫТСА ПЫМАЛЛИ ЙĂЛАСЕМ

Ача-пăча тата яш-кĕрĕм ӳсĕмĕн уявĕсем.

Йăх-несĕл уявĕсем (Сурхури, Ĕне ырри, Туй, Асăну тата ыт. те).

Кил-йыш тытакан йăласем (пĕрлĕх апачĕсем, эрне кунхи кĕлĕсем). Сывлăх ĕçĕ-хĕлĕ (мунча, шыва кĕни, йĕлтĕр-çуна ăмăртăвĕ, вайă картисем тата ыт.).

Тĕн Пĕрлешĕвĕсен Ăс-Тăн Академийĕ.

*«Хыпар» кĕнеки», 20.06.2000, 3(47)№ //«Хыпар», 20.06.2000, 105№.*

## ЭПИР ПУЛНĂ, ПУР, ПУЛАТПĂР! «ЧУХĂН» СĂМАХА ТА МАНĔ АСЛĂ, МУХТАВЛĂ, ĂСЛĂ ХАЛĂХ

*Кĕтнĕ кун, кĕтнĕ самант çитрĕ – палăртнă вăхăтра, 2000 çулхи çĕртмен 21-мĕшĕнче, 9 сехет иртсен, Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен IV Аслă пухăвĕ уçăлчĕ.*

Аслă Пуху президиумĕнче – Чăваш Республикипе Чăваш наци конгресĕн ертӳçисем, чăвашăн паллă çыннисем. Пухăва ăнăçу сунса **Никифор Наумовпа Николай Дедушкин** ватăсем пил сăмахĕ каларĕç: «Чăваш çĕрĕ ама пултăр! Чăваш халăхĕ йышлă пултăр! Чăваш халăхĕ хисеплĕ пултăр!» Залра çакна хирĕç «Çапла пултăр!» тени ахрăм пек виçĕ хутчен янăрарĕ. Халăх «Алран каймине» ура çине тăрса юрларĕ. ЧНК Аслă пухăвĕн председателĕ **В.П. Станьял** Пухăва уçнă май Конгресăн XXI ĕмĕрте чăваш пулать-и, пулмасть-и текен иккĕленӳ пач та çуккине пĕлтерчĕ. XX ĕмĕр пуçламăшĕнчех пирĕн Никольский пек, Юман пек маттур çынсем пулнă пулсан, халь Алюновсен ĕçне малалла тăсма пирĕн Федоров Президент пур. Николай Васильевича сăмах панă май Виталий Петрович ун пирки: «Чăваш халăхăн юратнă ывăлĕ», – терĕ. Çакна çирĕплетсех-тĕр ЧР Президенчĕ **Н.В. Федоров** хăйĕн салам сăмахне: «Манăн хаклă, ырă, маттур чăвашсем», – тесе пуçларĕ. Вăл Пухăва тухăçлă ĕçлеме ăнăçу сунчĕ. «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» тенине хирĕç халăх пĕр саслă пулса: «Çапла пултăр!» – тесе хуравларĕ.

Чăвашсен çăлтăрсем патне çитнĕ чаплă ывăлĕ А.Г. Николаев ку хутĕнче Аслă пухăва килеймен. Апла пулин те халăх ăна чăваш ятне тĕнчене кăларнă паттăрлăхĕшĕн тав туса алă çупрĕ. Аслă пуху делегацийĕ ЧР Патшалăх ялавĕ, И.Я. Яковлев, Çеçпĕл Мишши, К.В. Иванов, Çĕнтерӳ палăкĕ умне чечек çыххисем хума кайрĕ. Залри халăх Конгресăн пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлнă хастарĕсене пуç тайса Асăну саманчĕ ирттерчĕ.

ЧНК IV Аслă пухăвне килме 700 яхăн делегат суйланă пулсан, Пуху ĕçлеме тытăннă тĕле 405 делегата регистрациленĕ. Республика тулашĕнчен (пурĕ 29 регионтан) 122 делегат килсе çитнĕ.

ЧНК президенчĕ **Г.Н. Архипов** хăйĕн сăмахĕнче чăвашăн мухтавлă ывăлĕсем сахал маррине пĕлтерчĕ, анчах та пирĕн хушăрах «виçĕ пусшăнах тăванне сутма хатĕррисем те пурри» чăваш аталанăвне ура хурать. «Пур чăвашăн та теприне ура хумалли çинчен манмалла», – тенине илтсен халăх алă çупса ячĕ. «Кам çăлĕ чăваш халăхне, чăваш чĕлхине?» ыйтăва ЧНК президенчĕ хăех хуравларĕ: «Чăваш Президенчĕ». Апла пулин те «Чăваш халăх ашшĕ» ята никам та мар, Мускавран килнĕ **Геннадий Волков** академик тивĕçрĕ.

Кашкăр Хуначин – Геннадий Никандровичăн сăмахĕ пил пекех янăрарĕ: *«Манас марччĕ пирĕн хамăрăн паттăрсене. Ачăрсене хăвăртан ан пистерĕр. Ытарайми илемлĕ чăваш чĕлхипе калаçăр. Чăваш чĕлхи пире питĕ çывăхлтать. Пирĕн чĕлхе вăрттăнлăхĕнче – тĕнче историйĕ.*

*Тăван ятсене манас марччĕ. Авалхи ятне чĕртнĕ талантлă çын гени пулса тăрать. «Уçланкăри палана» Юрий Семенов çыраймастчĕ, Юрий Сементер çеç çырма пултарнă ăна.*

*Чăваш тумĕ... Анне çыхнă алсише тăхăнсан пӳрне сыпписем ыратма чарăнаççĕ. Чăнах та çапла. Чăваш кĕпине тăхăнтăм та – чĕрем лăпланчĕ, пуçăм ыратма чарăнчĕ. Тухьяра – чăваш историйĕ. Чăваш хĕрĕ çамки çине, тухья çине хĕвел тĕрлет... Хурăнташлăх туйăмĕ чи хаклă, чи кирлĕ туйăм. Ăшăр пăсăк чух чăваш яшки пĕçерсе çийĕр – ăшăр кăна мар, чунăр та канĕ. Чăваш чунне, чăваш кăмăлне упрăр. Тĕлĕнмелле лайăх халăх эпир. Никам çĕрне хапсăнман, нимĕнле хулана та çунтарса яман халăх. Мĕнле телейлĕ çын хамăр Президент. Чыс кăна мар, çав тери пысăк телей те çакăн пек халăха ертсе пыма».*

Хăйĕн сăмахне Геннадий Волков «Чăваш халăхĕ аслă та мухтавлă, ăслă халăх» тесе пуçларĕ. «Манăн 77 сăмах, çиччĕшне çеç калăп», – терĕ пулин те вăл, унăн пилне халăх кăмăлласа йышăнчĕ, тăвăллăн алă çупрĕ.

Чăвашсен Аслă пухăвне ют çĕр-шывсенчен те, çав шутра Бельгирен те салам телеграммисем çитнĕ. Вĕсене Пуху председателĕ **В.П. Станьял** вуласа пачĕ.

ЧР Патшалăх Канашĕн салам сăмахне унăн Председателĕ **Н.И. Иванов** каларĕ: «Пурнăç Аслă пуху хăй вăхăтĕнче палăртнă шухăш: «Танлăх, Тăванлăх, Килĕшӳлĕх, Чăмăртану» мĕн тери пысăк та чĕрĕ вăй пулнине ĕненмелле кăтартса пачĕ. Тĕнчипе саланнă халăх пĕрлĕх туйăмне çунатлантарса, шухăш-ĕмĕтне уççăн палăртса, инкек-синкеклĕ вăхăтра чăмăртанса, тăваплăха çирĕплетсе малтан мала аталанса пырать. Хальхи вăхăтра ваттисем пилленĕ хăват – авалтан пыракан тăванлăх çеç пире çак çăмăл мар самантра килĕштерсе ĕçлеме вăй парĕ тени – чăваш халăхĕн ытларах пайĕшĕн чун-чĕре çăл куçĕ пулса тăчĕ, çĕнĕ ĕмĕре чăваш ятпах кĕрес тесе ĕçлеме тата пурăнма хавхалантарса тăрать». Пуху тĕллевĕсене вăл çапла палăртрĕ: «Чăваш наци конгресĕн черетлĕ Аслă пухăвĕ мĕн пур чăвашсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ событи – Чăваш Республикин 80 çулхи юбилейĕ умĕн ĕçлеме пуçларĕ. Çакна символла пĕлтерĕшлĕ тесе хаклас килет. Аслă пуху çĕнĕ ĕмĕр алкумĕнче ку таранччен мĕн тунине пĕтĕмлетет, çĕнĕ йĕр хывма хатĕрленет. Патшалăхăмăр пур пирĕн. Вăл ӳлĕм те пултăр, вăй илсе те аталанса пытăр тесе алла-аллăн ĕçлесси – патшалăх влаçĕн органĕсемпе ЧНК Аслă пухăвĕн пĕрешкел тĕллевĕсем».

«Мария» фирма ертӳçи **Николай Тувалкин** Аслă пухăва Чăваш халăх çурчĕ валли 50 пин тенкелĕх хăтлă сĕтел-пукан туса пама шантарса çыру янă. Чăваш тĕн академийĕн ертӳçи **Федор Мадуров** Чăваш наци конгресне ылтăнпа сăрланă Йĕрĕх (сыхлавçă) кӳлепине парса чысларĕ. Çак ӳнер кӳлепинех (анчах та шурăпа сăрланăскере) ЧОКЦ, ЧАП ертӳçисем, Хусанти «Сăвар», Пушкăртстанри «Урал сасси» хаçатсем, Чĕмпĕрти, Самарти хастар чăвашсем тивĕçрĕç.

**И.А. Андреев** академик хăйĕн сăмахĕнче чăваш чĕлхин, культурин тата шкул вĕрентĕвĕн çивĕч ыйтăвĕсене хускатрĕ. Çакăн пек вăхăт та пулнă

чăваш кун-çулĕнче (пĕр 10 çул каялла): чăвашсен чĕрĕк пайĕ кăна тăван чĕлхепе вĕренме пултарнă. Çак лару-тăру республикăмăрта Чăваш чĕлхи саккунне йышăнма хистерĕ. Çĕнĕ вĕренӳ программине, чĕлхе саккунне 10 çул хушшинче ырлакансем те, хурлакансем те пулчĕç. Вăхăт хăех мĕн лайăххине е мĕн япăххине кăтартса парать. Иван Андреевич шухăшĕпе – влаçра е управленире чăваш чĕлхи кăна пуç пулаймасть: чăваш чĕлхин вырăс чĕлхине хĕсме хăват çук. Чи кирли – хула шкулĕсенче чăваш чĕлхине вĕрентни вырăс чĕлхине хĕсменнине ăнланма пулăшни. Иван Андреев чĕлхеçĕ Канашра ĕçленĕ чухне пĕр еврей çыннине лайăх пĕлнĕ. Çак еврей Германире – нимĕçле, Польшăра полякла калаçма вĕреннĕ. Чăвашра та чăвашла калаçма хăнăхса пынă вăл. «Йăнăш пулсан та чăвашлах калаçма тăрăшатчĕ. Пасарти чăваш сутуçисем ăна хайсен таварне яланах йӳнĕрех хакпа сутса яратчĕç», – шӳтлесе те илчĕ Иван Андреевич. Çак хушăрах вăл чăваша шухăша ямалли сăмахсем те каларĕ: Шупашкар чиновникĕсемшĕн чăваш чĕлхи укçа-тенкĕ ыйтăвĕ çеç пулсан, пирĕншĕн ку политика ыйтăвĕ. Чăваш халăхĕн тепĕр 25 процентне тăван чĕлхерен уйăрниех-çке ку. Çакă пĕтĕм Раççейри демократи çул-йĕрне хирĕç кайни пулать». Тăван чĕлхене епле вĕрентес енĕпе пире марисенчен е мордвасенчен тĕслĕх илме сĕнекен чиновниксем те пур. Апла тума юрамасть. Тĕрĕссипе, пушкăртсемпе тутарсенчен тĕслĕх илмелле. Хальлĕхе пирĕн республикăри хуласенче чăваш чĕлхине тăван мар чĕлхе пек çеç вĕрентеççĕ. Хулари чăваш ачи те чăвашла ялтисенчен кая ан вĕрентĕр. Чăваш культури ял культури кăна мар, хула культури те пулмалла. Ивановсем, Хусанкайсем ялта çеç мар, хулара та çуралмалла. Республика тулашĕнче чăваш чĕлхине вĕрентес ĕçри йывăрлăхсем çинчен те каларĕ Иван Андреевич. Чи пысăк чăрмав – кĕнекесем çитменни. Вĕренӳре чи кирлĕ кĕнекесене чăвашсем пурăнакан облаçсенче е республикăсенче хайсенче кăларма тытăнмалла мар-ши? Çакăн пек паха сĕнӳ тăратрĕ вăл Пуху умне.

Чăваш хаçат-журналĕн, кĕнекин XXI ĕмĕр умĕнхи шăпи пирки ЧНК вице-президенчĕ **А.П. Леонтьев**, ЧР пичетпе информаци енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕн çумĕ **П.В. Афанасьев** каларĕç. «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ Алексей Леонтьев хаçат-журнал йĕркеллĕ тухса тăтăр тесен «тепер чухне влаçпа пĕр чĕлхе тупма тăрăшмалла» пулнине те асăнчĕ.

Порфирий Афанасьева республика тулашĕнчи чăвашсем патне тăван чĕлхепе çырнă кĕнекесем çитерес ĕç кăткăслансах, пăчлансах пыни пăшăрхантарать. Тепĕр инкек те пур – паянхи саманара Чăваш Енри издательствăсен шучĕ утмăлтан та иртнĕ пулин те, вĕсем кăларакан кĕнекесем чылай чухне йăнăш пуххине аса илтереççĕ. Кун пирки «Хыпар» хаçат пĕрре мар çырнине те асăнчĕ вăл. Илемлĕ литература журналĕсен шăпи тата? «Тăван Атăла» пĕлтĕр 150 çын çеç çырăнса илнĕ. Илемлĕ литература журналĕ ниепле те реклама кăларăмĕ пулаймасть, укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен кĕрсе ӳкнĕ йывăр лару-тăруран тухма Порфирий Афанасьев чăвашсен ырă йăлипе ниме пухма сĕнчĕ.

Беларуç çĕр-шывĕнче пурăнакан 3 пин çурă чăвашран салам илсе килнĕ **В.Л. Никитин** («Нарспи» фонд ертӳçи) тĕнчери чăвашсен XXI ĕмĕрти пурлăх-ырлăх хутшăнăвĕсене мĕнлерех йĕркелемелли çинчен каларĕ. Чăваш малалла тĕнче шайĕнче аталантăр тесен пирĕн çирĕп идеологи пулмалла. Чăваш наци лидерĕ кирли çинчен те каларĕ Владислав Леонидович. Кайран çак лидер Чăваш Республикин Президенчĕ пулмалла. Унăн тĕреклĕ чăваш наци туйăмĕ, çав хушăрах экономика ĕçĕ-хĕлĕнче пысăк опыт пулмалла. Çавăн чухне тин чăваш халăх тĕнчи хăйсене чухăн туйма пăрахĕ.

Çĕнĕ Шупашкарти ача-пăча сывлăхне чĕртекен центр пуçлăхĕ **А.Н. Трофимова** чăваш халăх сывлăхĕ хавшаса пыни пирки пăшăрханса калаçрĕ. Ун хыççăн республика тулашĕнчен килнĕ делегатсем сăмах илчĕç.

Римма ПРОКОПЬЕВА.
*«Хыпар», 22.06.2000, 108№.*

## ПĔР ШУХĂШ-ĔМĔТПЕ – МАЛАЛЛА...

*Чăваш наци конгресĕн Аслă Пухăвĕ ĕнер кăнтăрлахи апат хыççăн малалла ĕçлерĕ.*

ЧР физкультурăпа спорт министрĕ **В.М. Краснов** делегатсене чăваш спортсменĕсем çĕр-шыври, тĕнчери ăмăртусенче тата Олимп вăййисенче малти вырăнсене йышăнса Чăваш Ене, чăваш халăхне çӳле çĕклени çинчен хавхаланса каласа пачĕ. Молдоврăри чăвашсен ертӳçисенчен пĕри **Ю.Н. Соловьев** республикăпа хуçалăх çыхăнăвĕ йĕркелесе яма сĕнӳ тăратрĕ: «Молдовăна трактор гусеницисем, минерал удобренийĕсем, ытти тавар кирлĕ. Чăваш Ене улма-çырла, хĕрлĕ эрех сутма пултаратпăр. Çак сĕнĕве тивĕçлĕ организацисем шута илсен тем пекехчĕ. Нумайăшĕ Молдоврăран Чăваш Ене куçса килесшĕн, мĕншĕн тесен унта патшалăх чĕлхи молдаван чĕлхи кăна. Вĕренӳ заведенийĕсенче те вăл тĕп вырăн йышăнать. Çавăнпа чăваш ачисене Шупашкарти вĕренӳ заведенийĕсене йышăнма пулăшу ыйтаççĕ».

**Н.М. Тувалкин** пайтаçă ЧНКна çĕнĕ çынсемпе вăйлатма сĕнчĕ. Ваттисен Канашĕн ертӳçи **А.И. Кибеч** ЧНКн тăватă çул хушшинчи ĕçне асăннă Канаш ларăвĕнче тишкерни, ăна «вăтам» тесе хак пани çинчен пĕлтерчĕ, ЧНК вице-президенчĕсене малашне Аслă пухура мар, Мăн Канаш ларăвĕнче суйлама сĕнчĕ. Çак сĕнĕве йышăнчĕç.

ЧНКн Патăрьел районĕнчи уйрăмĕн ертӳçи **И.И. Пахомов** районăн культура пайне ертсе пыма В.М. Савельевăна лартнăранпа Пăла тăрăхĕнче культура шайĕ чакнă тесе шутлать. Хайĕн çак шухăшне çирĕплетме тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ.

ЧНК вице-президенчĕ **В.А. Иванов** Конгресс делегачĕсене саламласа янă телетраммăсемпе паллаштарчĕ. Анат Кăмăри чăвашсем суйласа янă **А.А. Гаврилов** делегат чăваш гимназийĕ уçни çинчен пĕлтерсе савăнтарчĕ.

ЧР Президенчĕн Администрацийĕн ертӳçи – Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ **П.С. Краснов** делегатсен ыйтăвĕсене хуравларĕ, ЧНК ĕçĕ-хĕлĕ пирки хăйĕн шухăшне каларĕ. Вăл ЧНК çуллĕрех шая çĕкленнĕ тесе шутлать, мĕншĕн тесен Конгресс юлашки çулсенче культура ыйтăвĕсемпе кăна мар, экономика-хуçалăх ыйтăвĕсемпе те ĕçлет. Сăмахран, «Оренбурггазстрой» ертӳçипе В.В. Николаевпа тачă çыхăну йĕркелесе «Чуваши» ятлă илемлĕ те чаплă кĕнеке кăларнă. Нумаях пулмасть П.С. Краснова «Промтрактор» АО директорсен канашĕн председательне суйланă. Çакă патшалăхăмăрăн заводри витĕмне вăйлатма май парать тесе шутлать П.С. Краснов. Ун урлă заводра ĕçлекен çĕр-çĕр чăваша кăштах та пулин çăмăллăх туса парасса шанас килет.

Паллах, Ехрем хуçа çуртне ЧНКна Н.В. Федоров Президент килĕшмесĕр паман. Вăл хушнипе панă терĕ П.С. Краснов. «Тепĕр чухне ЧНКн пире, влаçра ĕçлекенсене, чĕпĕтсе те илмелле пулĕ, – терĕ вăл. – Анчах ун пек пулсан ЧНК ура çине çирĕп тăтăр». Укçа-тенкĕ тума вĕренсе çитсен кăна çапла пулма пултарассине систерсе каларĕ вăл. Хальлĕхе вара влаçпа ЧНКн килĕштерсе ĕçлеме тăрăшмалла.

Аслă пуху ЧНК ĕçне «вăтам» тесе хак пачĕ. Шупашкарта Чăваш керемĕ лартма, Шупашкар 500 çул тултарнă ятпа хисепленекен паркри Асăну Юпине çĕнетсе пысăклатма, Мăн Канаш членĕ çинчен калакан положени, резолюцисем йышăнчĕ, Ваттисен канашне çĕнĕрен çирĕплетрĕ, Аслă пуху председателĕнче **В.П. Станьялах** хăварчĕ, Чăваш наци конгресĕн президентне **Геннадий Николаевич Архиповах** суйларĕ.

Каçхине делегатсене концерт кăтартрĕç.

***

Аслă Пухăвăн иккĕмĕш кунĕнче пĕрлехи лару хыççăн делегатсем секцисене пайланса ĕçлерĕç. Экономика, бизнес, финанс секцине «Тав» фирма директорĕ **А.П. Капитонов** ертсе пычĕ. Чăваш усламçисем ĕçлĕ çыхăнусем йĕркеленĕ май Чăваш наци конгресĕшĕн, апла пулсан пĕтĕм чăваш малашлăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ ыйту хускатрĕç. «ЧНК çумĕнче бизнес-клуб йĕркелемелле, вăл ĕçлесе илекен тупăшăн 2 процентне Конгресс фондне парса тămалла», – палăртрĕç вĕсем.

Пархатарлă çак тĕллев пурнăçа кĕрес пулсан ЧНК «кĕсйи» самаях хулăнланнă пулĕччĕ.

Лару залĕнче чĕлхе, истори, культура ыйтăвĕсемпе тухса калаçакансем нумай пулчĕç. Аслă пухăвăн пĕрремĕш кунĕнче И.А. Андреев академик еврейсем чăваша хисепленине кăтартма чăвашпа чăвашла калаçнине асăнчĕ пулсан – Эстонирен, Тюмень облаçĕнчен, Томск тăрăхĕнчен килнĕ делегацисен ертÿçисем темшĕн-çке хăйсен сăмахне Чăваш наци конгресĕн Аслă пухăвне, чăваш халăхне хисепленине кăтартакан чĕлхепе мар – вырăсла калаçрĕç. Çакă хăех республика тулашĕнчи чăвашсене тăван чĕлхене вĕрентес ĕç мĕнле пулса пынине кăтартса парать. Вăл е ку тăрăхăн Чăваш культура автономи ертÿçи те халăх умĕнче чăвашла калаçма пĕлмест (е доклада тăван чĕлхепе хатĕрлеме ÿркенет) пулсан, диаспорăри ахаль чăвашсем, вĕсен ачисем тăван чĕлхене юратса вĕренесçĕ тесе çирĕплетме хĕнтерех. Паллах, пурте мар. Тĕслĕхрен, Красноярск тăрăхĕнчен килнĕ **А.А. Силантьева** тăван чĕлхене, тăван халăха мĕнле хисепленине хăйĕн калаçăвĕпе те, хÿхĕм чăваш тумĕпе те çирĕплетсе пачĕ.

Республикăра та чăваш чунне ыраттаракан ыйтусем çук мар. Çакă Çĕрпÿ районĕнчен килнĕ тавра пĕлÿçĕ сăмахĕнче те, **Денис Гордеев** çыравçă паянхи чăваш чĕлхи чăвашла мар «хуçăлса», вырăсланса пынишĕн пăшăрханса та хĕрÿленсе каланинче те палăрчĕ.

Делегатсем Аслă пуху ĕçĕ пирки мĕн шухăшланине пĕлес тесе хăшĕпĕринпе уйрăммăн та калаçса илтĕмĕр. Акă мĕн кларĕ Вăрнар районĕнчен килнĕ **Галина Кадыкова**: «Чăваш пуласлăхне чăваш чĕлхи çинчен çеç калаçса татса параймăн. Çĕр ĕçлесе пурăнакан хресченĕн нимĕнле çăмăллăх та çук. Мĕншĕн Конгресра çакăн çинчен те калаçас мар? Çĕр саккунĕ пирки те сăмах хускатмалла. Чăваш хресченне майран пăвакан саккун пулма пултарать вăл. Хуларан, айккинчен килнĕ çын укçаллă – вăлах пирĕн асатте-асаннесен çĕрне укçа парса туянма пултарĕ. Ял çыннишĕн пĕр пин те тем пысăкăш укçа. Ахальтен мар ĕнтĕ выльăх-чĕрлĕх валли апат илме укçа пултăр тесе пĕр литр сĕте 2 тенкĕ те 20 пуспа паратпăр... Çак ыйтусемпе мана Виталий Петрович [Станьял] экономика секцийĕнче калаçма сĕнÿ пачĕ. Анчах та кам итлĕ мана унта? Ман шутпа, вăл секцире услам мĕнле тăвасси çинчен çеç калаçрĕç...»

Лайăх-и, япăх-и – анчах Чăваш наци конгресĕн IV Аслă пухăвĕ ĕнер кăнтăрла хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Унăн председателĕ **В.П. Станьял** Пуху умне тăратнă ыйтусене хуравласа, пĕтĕмлетÿ сăмахĕ каласа Чăваш наци конгресĕн XX ĕмĕр вĕçĕнче иртнĕ Аслă пухăвĕ хупăннине пĕлтерчĕ. «Паянтан Чăваш наци конгресĕн V Аслă пухăвне хатĕрленме тытăнатпăр. 2002 çулта Конгреса туса хунăранпа 10 çул çитет», – терĕ вăл. ЧНК президентне **Г.Н. Архипова**, вице-президентсене **В.А. Иванова, А.П. Капитонова, О.Н. Викторова, А.П. Леонтьева, В.А. Тимофеева** малашне те лайăх ĕçлеме ăнăçу сунса тав турĕ. Аслă пуху хăйĕн ĕçне ура çине тăрса, Чăваш наци Гимнне «Алран кайми аки-сухине» юрласа вĕçлерĕ.

Юрий МИХАЙЛОВ,
Римма ПРОКОПЬЕВА.
*«Хыпар», 23.06.2000. 109№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН ЙЫШĂНĂВĔСЕМ

**РФ Федераци Пухăвĕн Национальноçсен палати çинчен**

РФ территорийĕнче авалтанпах хăйсен историллĕ вырăнĕсенче тĕрлĕ нумай халăх пурăнать. Вĕсен кашнин наци интересĕсем нумай енлĕ, хăш-пĕр чухне хирĕçлерех те. Çавăнпа, тĕрлĕ сăлтавсене пула, вĕсен ыйтăвĕсем çивĕчленсе кайса тĕрлĕ хирĕçÿ патнех çитме пултараççĕ. Анчах Раççей Федерацийĕн патшалăх влаçĕн аслă органĕсенче Раççей территорийĕнче пурăнакан тĕрлĕ халăхсен наци интересĕсене тытса пыма пултаракан орган çук. Совет саманинче çавăн пек влаç тытăмĕ СССР Аслă Совечĕн Национальноçсен палати пулнă. Çакă вăл паянхи куншăн та актуаллă.

Çакна палăртса ЧНК Аслă пухăвĕ çапла йышăнать:

**1.** Влаçăн чи аслă тытăмĕнче Раççей Федерацийĕнче пурăнакан нацисен интересĕсене хÿтĕлеме пултаракан тытăм кирлине палăртас.

**2.** РФ Президентне тата Федераци Пухăвне РФ территорийĕнче пурăнакан халăхсен наци ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултаракан орган – РФ Федераци Пухăвĕн Национальноçсен палатине йĕркелесе ярасси пирки ыйту тăратма кирлине пĕлтерес. Раççейри кашни халăх саккун кăларакан çак органа икĕ депутат суйласа ямалла пултăр.

**ЧР Чĕлхесем çинчен калакан саккун пурнăçа кĕрсе пыманни çинчен**

ЧР Аслă Совечĕ «ЧР чĕлхесем çинчен» саккунне йышăннăранпа вунă çул çитсе пырать. Çак саккуна пурнăçа кĕртни республикăри чĕлхесен танмарлăхне пĕтерес, чăваш чĕлхине чăннипех те хăйсене тивĕçлĕ шая хăпартас ĕçри пысăк утăм пулса тăрать. Анчах та, тĕрлĕ сăлтавсене пула, çак саккуна пурнăçа кĕртес енĕпе йышăннă программа пуррине пăхмасăрах асăннă саккун хальлĕхе пурнăçа асăрхамаллах улшăнусем кĕртмерĕ, чăваш чĕлхин шайне чăннипех те патшалăх шайне хăпартаймарĕ.

Çакăншăн пăшăрханнине палăртса Чăваш наци конгресĕн Аслă пухăвĕ çапла йышăнать:

**1.** ЧР Президентне тата ЧР Патшалăх Канашне «ЧР чĕлхесем çинчен» саккун паян кун та пурнăçа кĕрсе пыманни пирки пăшăрханнине пĕлтерес.

**2.** ЧР Министрсен Кабинетĕнчен асăннă саккуна пурнăçа кĕртес енĕпе тĕрлĕ ведомствăсене пĕрлештерсе ĕçлекен ятарлă пысăк полномочиллĕ комисси – чĕлхе комиссийĕ йĕркелеме ыйтас, унта ЧНК, ЧР Ăслăлăхпа ÿнер наци академийĕн, аслă шкулсен тата обществăн ытти пĕрлешĕвĕсен çыннисене кĕртме сĕнес. Чĕлхе комиссийĕ ЧР Министрсен Кабинечĕ çумĕнче канашлу-тĕрĕслев тытăмĕ пек ĕçлемелле.

**Массăллă информаци хатĕрĕсем çинчен**

Тĕрлĕ сăлтавсене пула чăваш халăхĕ Раççейпе унăн тулашĕнче йышлăн сапаланса пурăнать. Çавна пула вăл хăйĕн тăван чĕлхипе тата культурипе çыхăнăвне майĕпен çухатса пырать, наци хăй тĕллĕнлĕхне хавшăтать.

Чăваш культурин, чĕлхин пĕрлĕхне упрас, вĕсене аталантарас ĕçре массăллă информаци хатĕрĕсен тÿпи пысăк пĕлтерĕшлĕ. Анчах паянхи кун таранччченех пĕтĕм Раççейри чăвашсен культурăпа чĕлхе ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултаракан массăллă (уйрăмах электронлă) информаци хатĕрĕсем çук-ха.

Çакăншăн пăшăрханнине палăртса ЧНК Аслă пухăвĕ çапла йышăнать:

**1.** Раççейĕпе сапаланса пурăнакан чăваш халăхĕн хăйĕн чĕлхе тата культура ыйтăвĕсене тивĕçлĕ шайра татса пама право пуррине палăртас.

**2.** РФ Президентĕнчен тата Федераци Пухăвĕнчен пĕтĕм Раççей территорийĕпе сапаланса пĕтнĕ чăваш халăхĕн культура тата чĕлхе ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕллевпе ятарлă электронлă массăллă информаци хатĕрĕ йĕркелесе яма ыйтас.

**3.** ЧР Президент Администрацийĕнчен е ЧПУ-Интернет центрĕнчен ЧНК валли уйрăм сайт йĕркелеме майсем тупма ыйтас.

**Чăваш наци конгресĕ çумĕнче фондсем туса хурасси çинчен**

Чăваш наци конгресĕн Уставпа палăртнă тĕллевĕсене пурнăçлама тĕрлĕ фондсемпе пайтаçăсем нумай пулăшаççĕ. Ырă тĕслĕх вырăнне «Нарспи» фонда илме пулать. Вăл ЧНКна уйăрса панă ЧĂВАШ ХАЛĂХ ÇУРТНЕ тĕпрен юсама пуçларĕ, çак ĕçе ытти пайтаçă çынсемпе предприятисене хутшăнтарчĕ.

Çурт-йĕр, вĕрентÿ, культура, сывлăх, экологи ĕçĕсене куллен аталантарса пыма май пултăр тесе Чăваш наци конгресĕ малашне спонсор пулăшăвĕ пама пултаракан предприятисемпе, фондсемпе килĕшÿсен никĕсĕ çинче тата йĕркелÿçĕсен акцийĕсене илнипе хутшăнса тăма палăртать.

Чăваш наци конгресĕ çапла йышăнать:

**1.** ЧНК Тĕп ĕçтăвкомне куллен пулăшса тăнă фондсемпе ытти спонсорсене тав тăвас.

**2.** Çурт-йĕре тытса тăма пулăшакан «Нарспи» фонда (В.Л. Никитин) Чăваш халăх çурчĕн истори кĕтесне çырса хурас.

**3.** Юрă-ташă тата ытти ÿнерсем енĕпе пулăшакан фонда (ертÿçи – Константин Петрович Портнов), Чăваш спортне аталанма пулăшакан фонда (ертÿçи – Валерий Григорьевич Павлов), хуçалăх ĕçĕсене йĕркелеме пулăшакан «Тав» фирмăна (ертÿçи – Александр Петрович Капитонов) аталанса пыма майсем туса парас.

**4.** Чăваш наци конгресĕ çумĕнче чăваш диаспорин бизнесменĕсен пĕрлешĕвне (экономика форумне) йĕркелес. Пĕрлешÿ ĕçне йĕркелесе пыма ятарлă ушкăн суйлас.

**5.** Республика тулашĕнчи чăваш вырăнĕсенче вĕрентÿ ĕçне вăйлатма ятарласа Вĕрентÿ фончĕ йĕркелес, ăна аталантарма Чăваш Республикин Вĕрентÿ министерствине, ытти республикăсемпе облаçсен администрацийĕсемпе культура автономийĕсене туллин явăçтарас. Уйрăмах пултаруллă ачасем валли наци «пĕчĕк академине» уçас ыйтăва Чăваш Республикин Правительстви умне лартас.

**6.** Чăваш наци конгресĕ тăван культурăшăн, ÿнерсемшĕн, йăлайĕркешĕн, ăслăлăхшăн, халăх сывлăхĕшĕн ĕçлеме кăмăл тăвакан пайтаçăсене, фондсене, предприятисене, обществăсене хăйĕн ячĕпе усă курма ирĕк парать, çак ĕçре пур майсемпе те пулăшса пырать.

**Чечен-Ичкери Республикинчи лару-тăру çинчен**

Темиçе çул хушши Чечен-Ичкери Республикинче юнлă вăрçă пырать. Вун-вун пин çын вилнĕ, аманнă, килсĕр-çуртсăр, пурлăхсăр юлнă. Çулталăка яхăн пыракан вăрçăра пĕтĕм тĕнче йышăннă этем ирĕкĕсемпе прависене хĕсĕрлени куç кĕретех.

ЧНК Аслă пухăвĕ Чечен-Ичкери Республикин территорийĕнче пулса иртекен вăрçа сивлесе, чечен халăхĕн хăй тĕллĕнлĕх правине шута илсе РФ Президентне, Федераци Пухăвне Чечен Республикин территорийĕнче пулса иртекен вăрçа чарма, мĕн пур наци тата политика хирĕçÿлĕхĕсене мирлĕ, цивилизациллĕ майпа татса пама чĕнсе калать.

ЧНК Аслă пухăвĕ РФ территорийĕнче пулса иртекен нацисен хушшинчи çивĕч ыйтусене тĕнче правин нормисене тĕпе хурса, мирлĕ майпа анчах татса памалла тесе шутлать.

**Чăваш халăхĕн Тĕн Керемне тăвасси çинчен**

Чăвашсен сартăш тĕнĕ – авалхи тĕнсенчен пĕри, унăн ĕмĕрĕ 3 пин çултан иртет. Историн йывăр шăпине пула ăна ют вăйсем аркатса пынă, анчах çак вĕрентÿ, йăла-йĕрке ку таранччен упранса юлнă.

Чăваш халăхĕн ăс-хакăл академийĕ ыйтнине шута илсе Чăваш наци конгресĕн IV Аслă пухăвĕ çапла йышăнать:

1. Шупашкар 500 çуллăхĕн паркĕнче лартнă «Асран кайми» ятлă асăну юпине В.П. Петров (Праски Витти) проекчĕпе тимĕр пăрăхран 10 метртан кая мар çÿллĕшлĕ туса лартас. Ăна лартма газ хуçалăхĕсенчен, машинăсем тăвакан промышленноç предприятийĕсенчен пулăшу ыйтас.

2. Шупашкар 500 çуллăхĕн паркĕнче лартма йышăннă Тĕн Керемне тума чăваш халăх нимине пĕлтерес, ăна йĕркелесе пыма ЧНКран, Ваттисен хуралĕнчен, Чăваш тавра пĕлÿçисен пĕрлĕхĕнчен тата Чăваш Республикин влаç тытăмĕсенчен ятарлă ĕç ушкăнĕ йĕркелеме ыйтас.

3. Хăйне чăваш тесе шутлакан кашни çын чăваш халăхĕн Тĕн Керемне тума укçа-тенкĕпе, материалсемпе, ĕç вăйĕпе тата ытти кирек мĕнле майпа та пулăшма тивĕç. Керем лартни – пĕтĕм чăваш халăхĕн чысĕпе тивĕçĕ.

Аслă Пуху пашханĕ В.П. СТАНЬЯЛ.
2000, çĕртме, 21. Шупашкар.
*«Хыпар», 28.07.2000, 133№.*

# ЧНК НАЦИ РЕСПУБЛИКИСЕН ПРАВИСЕМПЕ ИНТЕРЕСĔСЕНЕ ХÿТĔЛЕСЕ ХĂВАРМА ЫЙТАТЬ

**Николай Федоров Президент Чăваш наци конгресĕн ертÿçисемпе тĕл пулчĕ**

*Эрне кун ЧР Президенчĕ Николай Федоров Чăваш наци конгресĕн президенчĕпе Г. Архиповпа, ЧНК Аслă пухăвĕн председателĕпе В. Станьялпа, ЧНК вице-президенчĕсемпе А. Леонтьевпа, А. Капитоновпа, В. Тимофеевпа, В. Ивановпа, ЧНК çумĕнчи Ваттисен Канашĕн председателĕпе А. Кибечпе, ЧНКн ытти хастарĕсемпе тĕл пулчĕ.*

Президент пухăннисене тин кăна хăй Шупашкар районĕнчи «Ольдеевская» агрофирмăран унти ĕç-пуçпа паллашса таврăнни, предприяти ĕçĕ-хĕлĕпе кăмăллă пулни çинчен пĕлтерчĕ. Чи малтанах вăл ЧНК хастарĕсене хăй вĕсемпе сахал тĕл пулса калаçнине палăртрĕ. Президент ЧНК Аслă пухăвне хутшăннă хыççăн Конгресс ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă ыйтусене унăн ертÿçисемпе тĕл пулса сÿтсе явма палăртса хунăччĕ терĕ. Анчах вăл çĕр-шыва ертсе пырассипе çыхăннă ыйтусене сÿтсе явнă çĕре хастар хутшăннипе ЧНК ертÿçисемпе палăртса хунă вăхăтра тĕл пулайманшăн каçару ыйтрĕ, тĕл пулу кун йĕркине унта хутшăннисем сăмах каланă хыççăн палăртма сĕнчĕ. Пуриншĕн те паллă: юлашки икĕ уйăхра Раççейре политика тытăмĕ тĕлĕшпе пысăк улшăнусем пулчĕç. Николай Федоров патшалăх шайĕнче хăш-пĕр енĕпе хăрушлăхсем, уйрăмах наци республикисемшĕн, сиксе тухма пултарассине систерчĕ. Çавăнпа хăйĕн те, ытти политиксен те Раççей шайĕнче ĕçлемелли нумай терĕ.

**ЧНК президенчĕ Г. Архипов:**

– ЧНК Аслă пухăвне делегатсем йышлă хутшăнчĕç: республика тулашĕнчен те, республикăран та. Аслă пухăва Чăваш патшалăхĕ пулăшнипе йĕркеллĕ ирттерсе ятăмăр. Аслă пухăвăн иккĕмĕш кунĕнче экономика ыйтăвĕсемпе канашлу тухăçлă иртрĕ. Юлашки вăхăтра ЧНК экономика ыйтăвĕсемпе уйрăмах тăрăшса ĕçлет. Акă çак кунсенче Шупашкар районĕнче консервлакан цех хута ятăмăр. ЧНК ЧР Президенчĕпе Правительствине Шупашкарти Ехрем хуçа çуртне хăйсене панăшăн тав тăвать. Мĕнле йывăр пулсан та ăна юсас ĕç малаллах пырать. Патшалăх енчен те пулăшу кирлĕ тесе шутлатпăр. Кунпа пĕрлех ăна юсама спонсорсенчен укçа-тенкĕ пухатпăр. Чĕлхесем çинчен калакан саккуна малалла пурнăçа кĕртме ЧР Правительствин ятарлă ĕç программине çирĕплетме ыйтатпăр. Ăна пурнăçланă май чиновниксен асăннă саккуна хирĕçле ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларма май килĕ, вĕсем хирĕçленине пĕтерсе хума пулĕ.

ЧНК президенчĕ малаллахи тапхăрта Николай Федоровран чăваш чĕлхипе çемьере кăна мар, ĕç коллективĕсенче те усă курччăр тесен патшалăх шайĕнче витĕмлĕн ĕçлемелле тесе ыйтрĕ. Паспортра национальноç паллине кăтартсан аванччĕ терĕ.

**Ваттисен Канашĕн председателĕ А.Кибеч:**

– Эпир юлашки вăхăтра эсир Мускаврa çав тери пысăк лав туртнине асăрхаса тĕлĕнсе тăратпăр. Федераци субъекчĕсен интересĕсене хÿтĕленĕшĕн питĕ пысăк тав.

Малалла А. Кибеч Президентран федераципе субъектсен хушшинчи çыхăнусене, вĕсен пуласлăхне çутатма ыйтрĕ. Лару-тăру кун пекех çивĕчленсен федераци саланса каймĕ-ши? Чăваш халăхĕн тата чĕлхин шăпи мĕнлерех пулĕ? Чăваш халăхне упраса хăварас тесен çывăх вăхăтрах мĕн тумалла-ши? ЧР Президенчĕ Н. Федоров çĕнĕ Конституци пирки мĕн шутлать?

**ЧНК Аслă пухăвĕн председателĕ В. Станьял:**

Конгресс тĕллевĕсем çинче чарăнса тăнă май çавнашкал шухăш каларĕ: ЧНК парти мар, общество-культура юхăмĕ, республикăри тата республика тулашĕнчи чăвашсене пĕрлештерсе тăрать. Халĕччен унăн ĕç программи пулнă, малашнехине те хатĕрлемелле. Çавна май вăл ЧНК программипе Николай Федоровăн чăваш халăхне аталантарас тĕллевпе палăртса хуракан программи пĕрешкелрех пулмалла терĕ. Çапла пулсан тин ЧНКпа Президент пĕр-пĕринпе тухăçлăн çыхăнса ĕçлеме пултарĕç.

В. Станьял Шупашкарта Чăваш Керемĕ тăвас ыйтăва хускатрĕ, ăна мĕншĕн тумаллине ăнлантарса пачĕ. Унăн шухăшĕпе Чăваш Керемĕ – чăваш халăхĕн символĕсенчен пĕри, халăх историйĕ. Ăна хăпартса лартасси пирки чăваш интеллигенцийĕ нумай çул каласать ĕнтĕ, анчах лав вырăнтан тапранман-ха.

**Якуркка Микихверĕ мăчавăр** та çав ыйтăвах çĕклерĕ, Шупашкарти паркра чăваш кил-çурчĕн, пурнăçĕн уçă музейне тума ятарлă проект тахçанах хатĕр, ăна ЧР Правительстви пăхса тухса çирĕплетнĕ, анчах строительство ĕçĕсем çав-çавах пуçланмаççĕ. Мăчавăр паркра пĕрремĕш юпа хăçан лартассине пĕлесшĕн пулчĕ.

**ЧНК Президиумĕн членĕ В. Никитин** хăй ертсе пынипе ЧНК шайĕнче экономика ыйтăвĕсене мĕнле татса пани çинчен каласа пачĕ. Вăл тăрăшнипе Шупашкар районĕнчи Тутаркассинче пахча-çимĕçе консервлакан завод хута янă. В. Никитин Президентран ЧНКна патшалăх органĕн статусне пама çук-ши тесе ыйтрĕ.

**А. Капитонов вице-президент ЧНК** çумĕнче чăваш диаспорин экономика форумне йĕркелеме сĕнчĕ.

Пĕтĕмлетсе каласан – тĕл пулу кун йĕркине ыйтусем чылай кĕртрĕç. Николай Федоров Президент вĕсене сехет ытла хуравларĕ.

Ун шучĕпе, Чăваш наци конгресĕн çĕнĕ çуртне кăвак тĕслĕ сăрăпа сăрлани вырăнлах мар. Тепрехинче, малашне юсанă чухне, ăна сарăпахĕрлĕпе сăрласан аван пулмалла. Чăнах та, çав çурта ЧНКна парас тĕлĕшпе хăйĕн те ĕçлеме тивнине пытармарĕ. Ăна юсаса пĕтерме патшалăх енчен пулăшу пуласса шантарчĕ. Çакăнпа пĕрлех спонсорсенчен те укçа-тенкĕ пухмалла терĕ.

Президент ЧНК хастарĕсем чăваш чĕлхине аталантарас, унăн пĕлтерĕшне ÿстерес тĕлĕшпе çĕклекен ыйтусене пурне те лайăх пĕлсе тăратăп терĕ. Вĕсенчен хăшне-пĕрне пурнăçа кĕртес тĕллевпе тивĕçлĕ органсене хушусем панă та-мĕн. Анчах та чĕлхесем çинчен калакан саккуна пурнăçа кĕртме укçа нумай кирлине аса илтерчĕ. Конгрессменсене экономика ыйтăвĕсемпе çине тăрса ĕçлеме ыйтрĕ.

Президент Чăваш çĕр-шывĕ хăйĕншĕн питĕ хаклă пулнине, вăл малашне ăçта ĕçлесен те Чăваш Республикипе çыхăну татмассине палăртса тĕл пулăва пухăннисене хăйĕнпе Президент вăхăчĕ тухиччен тачă çыхăнса ĕçлеме чĕнсе каларĕ.

**Николай Федоров тĕл пулура федераци тытăмĕ, Федераци Канашĕнче сÿтсе явакан саккунсен проекчĕсем çинче чылай чарăнса тăчĕ. Вăл асăннă саккунсене хирĕçлесе туха-туха калаçни Шупашкарпа Мускав тата Федоровпа Путин хушшинчи хирĕçÿ мар, кунта федерации малашнехи шăпи тухса тăрать. Е вăл федерацилĕх никĕсĕ çинче сыхланса юлĕ, е унитарлă патшалăх пулса кайĕ. Президент федераци патшалăхĕн совет тапхăрĕнче тунă пархатарлă енĕсене пĕтерме пуçларĕç тесе шутлать. Çакнашкал лару-тăрура Чăваш Республикин гражданлăхĕ çинчен кăна мар, ытти нумай ыйту çинчен калаçма çук. Федерацилĕх йĕркине сыхласа хăварма питĕ йывăр, мĕншĕн тесен обществăри лару-тăру ăна майлă мар, çынсем ăнланса пĕтерейменççĕ. Тен, Ельцин тапхăрĕнче ывăнса çитнине пула, пурнăç йывăр пулни пирки... Кремле хăйĕн тĕллевĕсене пурнăçламашкăн чарма питĕ йывăр.**

Николай Федорова Мускавра та, Шупашкарта та: «Эсир Кремльпе мĕншĕн хирĕçетĕр, çакă сире мĕн тума кирлĕ?» – тесе ыйту параççĕ. Çак ыйтăва хуравланă чухне вăл, паллах, хăйĕн интересĕсем пуррипе ăнлантармасть, пĕрремĕш вырăна çĕр-шыв шăпи тухса тăрать.

Республика тулашĕнчи чăвашсем валли кĕнекесем кăларас тĕлĕшпе ĕçлеме Вĕрентÿ министерствинче ятарлă пай туса хума сĕнчĕ. Тĕл пулура хускатнă, чăваш чĕлхипе çыхăннă ыйтусене татса парасси нумай чухне Чăваш наци конгресĕнчен килнинех палăртрĕ. «Ку енĕпе сирĕн куллен ĕçлемелле», – терĕ.

Президент ЧНК хастарĕсенчен патшалăх тата вырăнти самоуправлени органĕсенче ĕçлеме пултаруллă кадрсем тупса пама ыйтрĕ. Çакă чĕлхесем çинчен калакан саккуна пурнăçлама та пулăшĕччĕ.

Николай Федоров федераци органĕсенчен республикăна килекен тĕлĕнмелле çырусемпе паллаштарчĕ. Сăмахран, Мускав ЧР Ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç министерстви РФ Ял хуçалăх министерствин пĕр управленийĕ пулмалла тесе шутлать-мĕн. Ку чăннипех те ăнланмалла мар япала. «Социаллă çурт-йĕр» программа та федераци саккунне хирĕçлет-мĕн, ăна пăрахăçлама ыйтса прокуратура хирĕçлев те тăратнă иккен. Апла пулин те, тупăш сахал илекен çемьесем валли йÿнĕ хваттер тумалли майсем тупатпăрах, терĕ Президент.

**Президент наци республикисене хăратакан çул-йĕр мĕнле пулма пултарасси çинчен хăйĕн шухăшне каларĕ. Ахăртнех, Мускаврисен тĕллевĕ – пурăна-киле наци республикисен парламенчĕсене пĕтересси, вĕсен вырăнне Чулхулара Атăлçи федераци округĕн пĕр парламентне туса хурасси. Мускавра В. Жириновский тата ытти политиксем çавнашкал тĕллевсем пурнăçланса пынăшăн питĕ савăнаççĕ. Çак хăрушлăхсене курса Н. Федоров кĕрешÿрен малашне те пăрăнас çуккине систерчĕ. Федерацилĕх ыйтăвĕ çĕр-шывра çивĕчленнине пула ЧНК пĕлтерĕшĕ ÿснине, унран общество тивĕçлĕ позици ыйтнине палăртрĕ. Мĕншĕн тесен çĕр-шывра хăратакан ĕçсем пулса иртеççĕ, вĕсене общество юхăмĕсен курмасăр тăмалла мар, наци республикисен хăйĕн прависене тата интересĕсене сыхласа хăварма тăрăшмалла. Çав шутра Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республики тунă Килĕшĕве те.**

Кĕркунне республика интеллигенцийĕн форумне ирттерме сĕнчĕç. Президент çак шухăша хирĕç мар. Шупашкарти паркра чăваш йăли-йĕркин тата пурнăçĕн уçă музейне спонсорсен укçи-тенкипе тума сĕнчĕ.

**Д. Гордеев писатель** çыравçăсен автор правине республикăри хаçат-журнал редакцийĕсем пăхăнманнишĕн тарăхса каларĕ. Н. Федоров çавнашкал тĕслĕхсене тивĕçлĕ органсене пĕлтерме ыйтрĕ, çитменлĕхсене пĕтерме шантарчĕ.

**СССР халăх артистки В. Кузьмина** республикăри театр ĕçченĕсем Президент ячĕпе янă çырăва илни-илменнине пĕлесшĕн пулчĕ. Николай Федоров çырăва илсенех хурав пама шантарчĕ.

**Чăваш халăх поэчĕн Г. Ефимовăн** ыйтăвне хуравласа Президент наци республикисене сыхласа хăварма шанчăк пур, эпĕ каялла чакасшăн мар, хăш-пĕр енĕпе чакрăмăр пулсан та малаллах кайăпăр терĕ.

**ЧНК вице-президенчĕ А. Леонтьев** ЧР Президентне «Сирĕн Федераци Канашĕнче туса пыракан ĕçĕр-хĕлĕре ырласа «Хыпар» редакцине çырусем чылай килеççĕ, хирĕçлекенсем çук» терĕ. Николай Федоров çакна туять, ăна тĕл пулусенче, канашлусенче хавхалантарса калакансем йышлă-мĕн. Енчен те вăл çавна туймасан кĕрешĕве кĕмен те пулăттăм терĕ. Тĕл пулăва хутшăннисем пĕр шухăшлă пулса Президент Федераци Канашĕнче тытса пыракан çул-йĕре ырлани çинчен пĕлтерчĕç, унран наци республикисен интересĕсене тата прависене малашне те хÿтĕлеме ыйтрĕç.

Юрий МИХАЙЛОВ.

*«Хыпар», 8.08.2000, 140№.*

## ПРАВАСĂР ХАЛĂХ ПУЛМА ПУЛТАРАТЬ-И?

*Иртнĕ уйăхра Таллинра Тĕнчене тухайман халăхсемпе нацисен (ТТХНО) конференцийĕ иртнĕ. Унта организацин ĕçне пĕтĕмлетнĕ, халăхсен прависен пĕр пĕтĕмĕшле декларацин проектне сÿтсе явнă. Чăваш Енрен конференци ĕçне ЧНК хисеплĕ президенчĕ* ***А.П. Хусанкай*** *хутшăннă. Вăл пирĕн корреспондент ыйтăвĕсене хуравлать.*

**– ТТХНО ĕçлеме пуçланăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Мĕнле пĕтĕмлетÿ тума пулать, мĕн пачĕ вăл тĕнчене тухайман халăхсене?**

– Тĕнчене Тухайман Халăхсен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблейине туса хунăранпа 10 çул çитрĕ. 5 халăх çыннисем пуçарса янă пулнă ăна авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче Тарту хулинче. Тибет, Атăлçи Тутарстан, Грузи, Эстони, Латви çапла шутланă: «Тĕнче шайне тухайман халăхсен хăйсен прависене хÿтĕлеме майсем тупмалла. Халăх хăйĕн ыйтăвĕсене, нушине тĕнче шайĕнче сÿтсе явма пултартăр».

1991 çулхи нарăс уйăхĕнче Гаагăра (Голланди) йĕркелÿ пухăвĕ иртнĕ. Тĕнче шайĕнчи паллă тĕрлĕ халăх çыннисем хутшăннă çав Ассамблейăна. Организацин штаб-хваттерĕ Гаагăра йĕркеленнĕ.

Ăна тума тĕрлĕ енлĕ пулăшу килнĕ. Вара ытти халăхсем те çак Ассамблейăна кĕнĕ. Халĕ 52 халăх хăйĕн прависене тĕнче шайĕнче хӳтĕлеме пултарать. Вĕсенчен 18-шĕ Совет Союзĕнче пурăннисем.

Кашни халăхăн хăй тĕллĕн пурăнма ирĕк пур. Анчах ун патне илсе пыракан çула кашни халăх тĕрлĕрен утса тухать. Лару-тăрăва кура ĕнтĕ. Тибетăн – Китайпа хирĕçӳ. Китайрах пурăнакан уйгурсен хăйсен лару-тăрăвĕ...

Тĕп принципсем: демократие аталантарни; хăй тĕллĕнлĕх прави. Ăна тĕнче йышăннă; çак тĕллев патне вăрçăпа пыма юраманнине палăртни; çут çанталăка упрасси; уйрăм çын прависем халăх правипе килĕшӳллĕ пулмалли. Вĕсене хире-хирĕç тăратма кирлĕ мар. Уйрăм çын та халăхран ытла ирĕклĕ пулма пултараймасть. Халăхĕ те çын правине хĕстерсен ирĕклĕ пулаймĕ.

Тепĕр тĕллев. Çак организацие кĕрекен халăхсем никама пăхăнманлăх шайне çитсе Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине кĕрсен, калăпăр, Латви, Эстони, Грузи, вĕсем пулăшакансем пулса юлма пултараççĕ. Халĕ пулăшакансенчен Эстонипе Латви пур. Ытти халăхсен нушисене ăнланаççĕ, мĕнпе те пулин хавхалантарма тăрăшаççĕ.

**– Конференци пĕтĕмлетĕвĕсем пирĕн халăха хăш енчен пырса тивеççĕ?**

– Атăлпа Урал тăрăхĕнчи Тутарстанран, Мари Республикинчен те кайнă ку конференцие. Шухăшлатăп та – уйрăм халăх хăйĕн ыйтăвне пĕччен татса параймасть. Кунпа ыттисем те килĕшрĕç. Чăн та, Атăлçи халăхĕсен пурнăçĕ питĕ çыхăнуллă. Тĕнчене тухас текен халăхсен тĕллевне пурнăçлас тесен пĕрле пурăнмалла, пĕр-пĕрне ăнланмалла. Тахçанхи пĕрлĕхе ăша илсе, харкашу-вăрçăсене тĕрĕс хак парса çĕнĕ ĕмĕре ырă кăмăлпа кĕрес пулать.

Малтан эпир «халăхсен туслăхĕ» пирки калаçаттăмăр. Тĕрлĕ тĕл пулусем, фестивальсем, концертсем иртетчĕç. Халĕ кун пекки çук. Питĕ начар ку. Атăлпа Урал тăрăхĕ географи ăнланăвĕ кăна пулмалла мар. Пĕр çĕрте кăна пурăнни çителĕксĕр. Тĕрлĕ культура пĕрлĕхĕ пур, тĕрлĕ чĕлхесен çыхăнăвĕсем... Истори хăй çапла тунă. Экономика енчен те тĕрлĕ çыхăнусем пулмалла. Çак çыхăнусем пур пулин те – тивĕçлĕ шайра мар. Кашни республика хăйĕн ыйтăвĕсене Мускав урлă татса пама тăрăшать. Енчен та хамăр хушăри çыхăнусене вăйлатсан эпир нумай ыйтăва хамăрах татса пама пултаратпăр. Мĕншĕн тесен кашни республикăн шалти наци политики пулмалла. Апла-и, капла-и, ăна тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ туса пыраççĕ. Анчах пирĕн йăхташăмăрсем çак регионтах пурăнаççĕ. Апла, тулаш наци политики кирлĕ. Тулаш наци политикине, калăпăр, Тутарстанпа калаçса татăлмасăр тăваймастпăр. Кунта вара вĕсен лару-тăрăвне шута илмелле. Çапла çеç ăнăçу пулать.

Тепĕр шухăш: халăхсен туслăхĕ урлă нацисен пĕрлĕхне йĕркелесчĕ. Наци вăл хăй майлă пĕр организм. Анăçра ăна урăхла ăнланаççĕ. Америка халăхĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пурăнакан халăх теççĕ. Ку вăл – политика. Çак патшалăхра пурăнакан халăхсем – пĕр наци. Пирĕн – урăхла. Тутарстанра пурăнакан чăвашсем – урăх халăх. Пушкăртстанра та. Наци вара вăл çак пĕтĕм халăхсене пĕр шухăшпа пĕрлештерекен организм пулмалла. Çавăн пек ăнлав. Ку политика пĕрлĕхĕ мар. Тăванлăх, чĕлхе, пĕр евĕрлĕ тĕнче курăмĕ, вĕсене пĕрлештерекен пысăк идейăсем, наци идеологийĕ... Çаксемсĕр наци пулаймасть.

Атăлпа Урал тăрăхĕнче пурăнакан халăхсен наци идеологийĕ вăй илчĕтĕк – çавăн чухне тин нумай ыйтăва лайăхрах татса пама пултаратпăр.

Наци пулсах çитменнипе эпир иртнĕ ĕмĕрти пек шухăшлатпăр. Халĕ, çĕнĕ ĕмĕр умĕн, урăхла шухăшлав кирлĕ. Çĕнĕ пин çуллăха наци пулса кĕрсен тем пекехчĕ. Кун пирки тавлашу та пулчĕ. Мĕншĕн? Тутарсем те «Тутарстан нацийĕ» пур теççĕ. Ку шухăшпа килĕшместĕп. Вĕсем Анăç çулĕпе кайса çапла калаççĕ. Чăвашсем те, çармăссем те тутарсемпе пĕрле пĕр Тутарстан халăхĕ пулса тăраççĕ. Раççей те çав çулпах каять. Хăй вăхăтĕнче совет халăхĕ текен пĕрлĕх тăвасшăнччĕ. Пулмарĕ. Сапаланса кайрĕ.

Америка теççĕ. Унта тĕп халăхсем юлманпа пĕрех. Вĕсене экзотика шайĕнче резервацисенче тытаççĕ. Çавă кăна. Пирĕн урăхла лару-тăру, уйрăм истори. Кунта, Раççей территорийĕнче, тĕп халăхсем пурăнаççĕ. Вĕсенчен темле урăх наци тума май çук-тăр. Ку ĕнтĕ тĕрлĕ политика тĕллевĕсене пурнăçлама кирлĕ пулнă. Ман шутпа, наци политики анлăрах, çӳллĕрех шайра пулмалла. Вара çыншăн та лайăх. Раççей – тĕрлĕ наци çыннисенчен, нумай культурăллă, историллĕ, чĕлхеллĕ нацисенчен тăракан патшалăх. Ку Раççей сăнне илемлетет, чунне пуянлатать. Вĕсене якатма, пĕр пеклетме кирлĕ мар. Наци процесне аталантармалла. Çавăн валли тĕрлĕ майсем тупмалла. Раççей шайĕнче ăнăçсăр пулса пыракан наци политики çакна ăнланманран килет. Ăна курманни тĕрлĕ хирĕçӳсем кăларса тăратать. Чĕрĕ пурнăç процесĕ пырать паллах. Анчах çакна чиновниксем курмаççĕ. Çавна пулах Раççей шайĕнче наци политики çук. Политикăпа наци аталанăвĕ – уйрăм процессем. Вĕсене эпĕ уйăрасшăн.

**– Культура автономийĕсене туса хуни çав процеса политикăран уйăрас, аталантарас тениех пуль?**

– Çимĕçне питех курмастпăр-ха. Тен, пулĕ?

**– Ку шухăш питĕ тухăçлă пек. Наци ыйтăвне хускатсанах тӳрех темле политика кураççĕ. Ним çук çĕртен путарса лартаççĕ. Çын тата халăх аталанăвĕнче мĕн политики пултăр?**

– Аталанăвăн та майĕ пулмалла. Енчен те хĕстерсе лартсан, хăйсене лайăх мар туйнă пирки, халăх хирĕç тăрать. Вара чăнласах та политика пуçланса каять, юн тăканать.

**– Ку – уçăмлă шухăш. Пурте килĕшрĕç-и?**

– Тĕпрен илсен килĕшрĕç. Тавлашу, паллах, пулмалла та. Кунта чарăнса, республика пур тесе, пăхса тăмалла мар, çыхăнусене вăйлатас пулать. Тĕллев – республикăна ят панă халăха аталантарасси.

**– Чеченсем хутшăнчĕç-и?**

– Пынăччĕ, анчах Раççейрен мар. Тĕп ырату – вĕсенчен вăрă-хурах туса яни. Çавна ăс-тăна кĕртсе лартнă. Вăрçă, пĕтнĕ тесен те, пĕрех пырать. Вĕсен çурчĕ, çăкăрĕ çук. Мĕн тумалла? Хыпарĕ лайăххи çук, юн тăкнине хăнăхнă... Ун пек чухне тата мĕн тумалла? Вĕсен тĕп шухăшĕ – калаçмалла. Пĕрех калаçма тивет. Ыйту вăрçăпа татăлаймасть.

**– Конференци, куратăп, тĕрлĕ проектсем те хатĕрленĕ пулас?**

– Çапла. Генеральнăй Ассамблейăра йышăнса Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине тăратасшăн. Кунта Халăх прависен декларацийĕн проекчĕ пур. Хăçан та пулин ăна тĕнче шайĕнче йышăнĕç тетĕп. Тĕп хирĕçӳ кунта çакă: тĕнче пĕрлĕхĕ йышăннă декларацисенче патшалăхăн чиккисем улшăнмарĕç. Никама пăхăнман патшалăх тăвас тесен, паллах, малтанхи чикĕсем ванаççĕ. Ку шухăшсем хирĕçеççĕ. Тепĕр тесен пурнăç хăех вĕрентет. Халăхсем мирлĕн уйрăлаççĕ, никама пăхăнман патшалăх пулса тăраççĕ. Чехословаки пайланни, Совет Союзĕ арканни, тĕпрен илсен, мирлĕ пулса иртнĕ. «Территори пĕрлĕхĕн принципĕ» тени темле догма пулмалла мар. Тĕнче улшăнать, халăх нацие куçса аталанса пырать. Урăхла шай, пурнăç пуçланать. Анчах çак процеса пысăк патшалăхсем хирĕç. Халĕ Китай Тибета, уйгурсене пĕтерсе пырать. Тĕнче çакăн çине ним пулман пек пăхса тăрать.

Çак деклараци, проект пулсан та, наци идеологийĕн никĕсĕ пулма пултарать. Тĕнчене тухайман халăхсене хӳтĕлеме май килĕ. Анчах çын правине хӳтĕлекен механизм халĕ те çук та, халăх правине саккун шайне лартма вара тата йывăртарах пулать. Тӳрех калаççĕ: «Пирĕн шалти ĕçсене ан хутшăнăр!» Кунта та çав япала сиксе тухать. Анчах ăна та мĕнле те пулин татса памаллах пулать.

Сарри МИШШИ калаçнă.
*«Хыпар», 18.10.2000, 187№.*

## КАЛЛЕХ МУСКАВА ЮРАЙМАРĂМĂР-ШИ?

*Чăвашлăх ыйтăвĕпе кăсăкланакансем «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккун епле йывăрлăхпа кун çути курнине пĕлеççех ĕнтĕ. Унтанпа иртнĕ кĕркунне вунă çул çитрĕ. Саккун хăйĕн пĕрремĕш çимĕçĕсене пачех. Чăваш чĕлхи уйрăм хваттерсемпе урам кĕтесĕсенче çеç мар, патшалăх тытăмĕсенче те илтĕнме пуçларĕ. Йывăрпа пулсан та ырă улшăнусем пулчĕçех, пăр тапранчĕ.*

Анчах та 1997 çулта саккун хуралçисем «ЧР чĕлхесем çинчен» саккунра Раççей Федерацийĕн Конституцине хирĕçлекен (темшĕн темисе

çул иртсен тин) «самантсем» асăрханă. ЧР Прокуратури республикăн Аслă судне «ЧР чĕлхесем çинчен» саккуна ĕçе кĕртмелли çинчен» постановленин 3-мĕш пункчĕн 3-мĕш абзацне пăрахăçлама ыйтнă. (Аса илтерер: постановленире патшалăх чĕлхисене пĕрне кăна мар, иккĕшне те пĕлекен çын йышăнма тивĕçлĕ специальноçсемпе должноçсене шута илсе палăртасси, çавăн пекех экзаменсене чăваш чĕлхипе йышăнакан, специальноç паракан вăтам тата аслă вĕренӳ заведенийĕсенчи специальноçсен списокне палăртасси, вĕренме кĕнĕ чух тăван чĕлхепе экзамен тыттарасси пирки сăмах пырать.) Акă тата 2000 çулта каллех асăннă саккунра çĕнĕ «йăнăшсем» асăрханă-мĕн. Раççей Федерацийĕн Юстици министерствин Чăваш Республикин управленийĕ иртнĕ çулхи раштавăн 9-мĕшĕсенче ЧР Патшалăх Канашне эксперт пĕтĕмлетĕвĕ çитернĕ. «Тата мĕн амакĕ сиксе тухнă?» тейĕ вулаканăм. «ЧР чĕлхесем çинчен» саккунăн уйрăм пайĕсем каллех Раççей Конституцийĕпе, федераци саккунĕсемпе тӳр килмеççĕ имĕш.

Каллех Мускава юраймарăмăр-ши?

Чăваш наци конгресĕн хастарĕсемшĕн, чăвашлăх ыйтăвĕнчен аякра тăман ентешĕмĕрсемшĕн çак хыпар уяр кунхи аслати кĕрлевĕ пекех пулчĕ. Чăваш халăх хаçачĕ «Хыпар» та ыйтăва май килнĕ тарăн çутатать. Асăннă саккун патне çĕнĕрен таврăнса, ăна тепĕр хут «ала» витĕр кăларса хамăрăн «айăпăмăра» шĕкĕлчеме тăрăшатпăр.

**Чăваш наци конгресĕн Президиумĕ кăçалхи пуш уйăхĕн 5-мĕшĕсенче Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ларусен залĕнче халăх пухăвне ирттерчĕ.** Кун йĕркинче пĕр ыйту: «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккуна улшăнусем кĕртесси çинчен» саккун проектне пăхса тухасси. Пухăва чăваш интеллигенцийĕнчен ытларах чĕлхе ыйтăвĕпе ĕçлекенсем, писательсем, тĕпчевçĕсем, журналистсем хутшăннине палăртмалла, ЧР Президент Администрацийĕн тытăмĕнчен те, ЧР Культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерствинчен те явапла çынсем, хуçалăх ĕçĕнчи çынсем, тĕрлĕ вырăнти тӳресем, вĕрентӳçĕсем пурччĕ.

Кун йĕркинчи ыйтупа **ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, ЧНК вице-президенчĕ О.Н. Викторов** доклад турĕ. Олег Николаевич республикăри саккун хуралçисен шучĕпе «ЧР чĕлхесем çинчен» саккунăн Раççей Конституцийĕпе тата саккунĕсемпе «килĕшсе тăман» статйисене тишкерчĕ. Чи малтанах йĕрке хӳтĕлевçисем саккунран пуçĕпех кăларса пăрахма палăртнă статьясем – 4,13,15,16,18,29 – пирки чарăнса тăчĕ.

Докладçă сăмахĕнчен кăштах пăрăнса çак статьясенчен хăшне-пĕрне аса илер-ха. Сăмахран, 18-мĕш статьяна: «Гражданин статусне кăтартса паракан официаллă документсене – паспорта, ĕç кĕнекине, пĕлӳ илни çинчен калакан документсене, çурални, мăшăрланни çинчен панă свидетельствăсене тата ытти документсене те чăвашла тата вырăсла çыраççĕ». Çак статьяна пĕтерсен официаллă документсене вырăсла çеç çырма пуçлĕç-ши? Мĕн тĕлĕнмелли, çĕнĕ паспортсене, пĕлӳ илни çинчен калакан доументсене йĕркелесе çырассине «ЧР чĕлхесем çинчен» саккунăн 18-мĕш статйи вăйра тăнă чухнех пăхăнма пăрахнă марччĕ-и?

«Патшалăх Канашĕ проекта йышăнсан акă мĕнпе юлăпăр эпир», – терĕ О.Н. Викторов. – 1) Влаç, управлени органĕсем граждансен заявленийĕсене, çăхавĕсене чăвашла мар, вырăсла кăна хуравлама тытăнĕç; 2) йĕркене пăсни çинчен калакан ĕçсене чăвашла пăхса тухмасан та пултарĕç; 3) арбитраж ĕçĕсене, прокурор надзорĕн акчĕсене чăвашла çырмасан та пултарĕç; 4) ЧРта тухакан хаçат-журнала, кĕнекесене ытларах чăвашла пичетлесе кăларасси пулмĕ; 5) республика патшалăх органĕсемпе ытти органсен, предприятисен, учрежденисемпе организацисен пичечĕсем, штампĕсем, штемпелĕсем, официаллă бланкĕсем çинчи текстсене те унчченхи пек чăвашла çырмасан та пултарĕç».

Доклада сӳтсе явма 12 çын хутшăнчĕ. Вĕсенчен хăш-пĕрин шухăшĕсемпе паллаштаратпăр.

**В.А. Иванов, ЧНК вице-президенчĕ:** Словарьсенче чĕлхе халăх тенине пĕлтерет тенĕ. Çавăнпа та чĕлхе ыйтăвĕсене сӳтсе явас ĕçе пĕтĕм халăхпа хутшăнмалла. Саккун 10 çул ĕçлерĕ. Çак тапхăрта никам та саккун хĕстерет темен. Халăхсен туслăхне çирĕплетме пулăшнă çеç. Пирĕн çĕр-шывра 70 çул хушшинче 23 чĕлхе пĕтнĕ. Ăна саккунпа сыхламасан тата ыттисем те çухалма пултараççĕ. «ЧР чĕлхесем çинчен» саккуна депутатсем çине тăнипе йышăннă. Халĕ вара вĕсен вăйĕпех пĕтерттересшĕн. Хамăр халăхăн, чĕлхен тăшманĕ пулар мар.

**И.А. Андреев, профессор, «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккун проекчĕн авторĕ:** Паян пире каластаракан саккун Раççей Федерацийĕн «Раççейри чĕлхесем çинчен» саккунне нихăш пайĕпе те хирĕçлемест. Чăваш Республики – Раççейĕн уйрăлми пайĕ, çавăнпа та Раççейĕн официаллă чĕлхине йышăнмасăр тăма пултараймасть. Пире мĕн чăрмантарать-ха? Хамăра хӳтĕлеме пĕлменни. Чĕлхе саккунне хирĕççисем малтан та пурччĕ, халĕ те тупăнсах тăраççĕ.

Акă 4-мĕш статьяна [патшалăх влаçĕпе управлени органĕсем, учреждениcем, предприятисемпе организацисем тата вĕсен должноçри çыннисем граждансен заявленийĕсемпе жалобисем çине вĕсене мĕнле чĕлхепе (чăвашла е вырăсла) çырнă, çав чĕлхепе ответ параççĕ] пăрахăçлама сĕнеççĕ. Ас тутарар: РФ «Раççейри чĕлхесем çинчен» саккунра та граждансен ыйтăвĕсене вĕсене мĕнле чĕлхепе çырнă çав чĕлхепе хуравламалла тесе палăртнă.

Саккун хуралçисем çапла хăтланнине пирĕн «ЧР чĕлхесем çинчен» саккуна хĕстерни пек йышăнмалла.

**Д.В. Гордеев, писатель:** Тĕнчере çулсерен пĕр чĕлхе çухалать. Вăл начаррипе мар. Тепĕр халăх чĕлхи ăна пусмăрласа çитернипе. Вырăс чĕлхи – Раççей патшалăх чĕлхи, халăхсен хутшăну чĕлхи. Ăна мала лартса хамăрăн тăван чĕлхене хупласа хутăмăр.

Чĕлхе «иммунитетне» тытса пырас тесен çыру чĕлхи пирки ытларах шухăшламалла. Вăл питĕ уксахлать пирĕн, кĕнеке кăлараймастпăр. Вунă çул хушшинче ачапча валли пурĕ те 13 кĕнеке çеç пичетленĕ.

**Б.Л. Борлен, çыравçă, журналист:** Тăван чĕлхене упракансем кам тетĕр? Диаспора чăвашĕсем. ЧНК юлашки вăхăтра республика тулашĕнче чĕлхе, культура ыйтăвĕсемпе мар, ытларах бизнеспа кăсăкланнăн туйăнать.

**Д.Г. Герасимов:** Парламент асăннă саккуна хӳтĕлесе хăвараймасан суда хамăрăн тухмалла.

**В.П. Станьял, ăсчах, ЧНК Аслă пухăвĕн председателĕ:** Çĕнĕ ĕмĕрте чăваш пулĕ-и е çук-и? Пĕтĕмпех хамăртан килет. Чăваш чĕлхи шăпишĕн ытти халăхсем мар, хамăрах явапла. Уйрăм тӳресен тӳнтер ĕçĕсене ытти халăхсем çине йăвантарас мар.

Тухса калаçакансем татах пулчĕç. Кашнин сăмахне, вĕсен калаçăвĕн тĕп шухăшне тĕпе хурса акă мĕн тенĕ пулăттăм: Чăваш Республикин «ЧР чĕлхесем çинчен» саккун 10 çул йĕркеллĕх ĕçлерĕ, вăл халăхсен хушшинчи ăнланулăхпа туслăха федераци никĕсĕ çинче аталантарма пулăшрĕ. Саккун малашне те Раççей пĕрлĕхĕшĕн, чăваш халăхĕшĕн усăллă пулĕ. Халăх пухăвĕ те çаксене шута илсе, шанса тăрса çапла йышăнчĕ (йышăну 12 пунктран тăрать, хăшне-пĕрне вулакан патне çитерĕпĕр): «ЧР чĕлхесем çинчен» саккунăн пĕр пайĕ те Раççей Федерацийĕн «Раççейри чĕлхесем çинчен» саккунне хирĕçлемест. Çавăнпа вăл çак хальлĕнех вăйра тăма тивĕç; чăваш чĕлхи – наци пуянлăхĕ, палăкĕ, мăнаçлăхĕ, тĕп тымарĕ. Ăна Чăваш Республикинче ытти чĕлхесемпе тан хисеплеменни, ирĕклĕ аталанма, вăйра тăма чарни танлăхпа демократие таптани пулать. Çавăнпа «ЧР чĕлхесем çинчен» саккуна юрăхсăр улшăнусем кĕртме тĕллев тытнине сивлес, саккуна малалла ĕçлеме майсем туса парас, Чăваш Ен Патшалăх Канашĕн депутачĕсене тăван чĕлхене, унпа пĕрле чăваш халăхне кӳрентерес ĕçрен пăрăнма ыйтас; ЧР Министрсен Кабинетне (ЧР Вĕрентӳ, Культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерствисене), ЧР Президент Администрацине, ЧР Патшалăх Канашне «ЧР чĕлхесем çинчен» саккуна пурнăçа кĕртмелли программа туллин пурнăçланманнине пĕтерме ыйтас, ăна пурнăça кĕртмелли çул-йĕре уççăнрах палăртма тата тĕрĕслесе тăма сĕнес, влаç халăхăн пулнине тата халăхшăн пулнине аса илтерес; «ЧР чĕлхесем çинчен» саккун малашне те тĕрĕс-тĕкелех ĕçлессе шанатпăр, çавăнпа малашнехи çĕнĕ тапхăр валли саккуна пурнăçламалли тепĕр программа тума тытăнмалла, çакна йĕркелес

ĕçе ЧР Патшалăх Канашĕн хăйĕн çине илмелле; ЧР Патшалăх Канашĕ пирĕн сĕнӳсене шута хумасан Европа Совечĕн судне тавăç тăратас; чăваш чĕлхине çине тăрса ура хуракансене Намăс хăми çине кăларас, танлăхпа туслăхшăн тăрăшса ĕçлекенсене ЧНК енчен тивĕçлĕ хисеп тăвас; ЧПУ, ЧППУ тата ытти вĕренӳ заведенийĕсем тулай чăвашĕсене пулăшас енĕпе пухнă опыта шута илсе унпа патшалăх шайĕпе усă курмалла тума сĕнес (хатĕрленӳ ушкăнĕсем хире-хирĕçле килĕшӳсем, вĕренекенсене тата вĕрентекенсене пĕр-пĕрин патне яни тата ытти те); ЧНК IV съезчĕ тулай чăвашĕсемпе ĕçлемелли пай е уйрăм тума сĕннине хирĕç ЧР Правительстви нимле хурав та паманнине палăртас.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 12.03.2001, 44№.*

## ПĔРЛЕ ПУЛАР, ПĔРЛЕ ĔÇЛЕР

*Çĕнĕ ĕмĕре чăваш ятпах кĕтĕмĕр. Чăвашлăх тени пирĕн юнра çеç юлман-ши, чунпа вара эпир урăх халăх çынни пулса кайман-ши? Мĕнлерех тăрăшатпăр эпир хамăрăн тăванлăхшăн? Çак ыйтусем кашни çынна шутлаттармалла, канăçсăрлантармалла пек. Халăхăн ытларах пайĕ чăвашлăх шăпишĕн пуç ватмасть. Вăл хăйĕн саккунĕпе пурăнать: кун иртет те каç пулать, çулталăк хăйĕн картине хупать, чăваш вара яланхи йĕркепе сĕтел çийĕ пушă ан пултăрччĕ тесе тĕрлĕ ĕçре пилĕкне авать, ывăннă хыççăн апачĕ те лайăх анать унăн, ыйхи те канлĕ килет. Çапла хырăм тутă пулсан, ачи-пăчи выçăпа макăрмасан чăваш хăй шучĕпе начар мар пурăнатăп тет. Кӳршĕаршăпа хирĕçместь, Турă умĕнче çылăха кĕместь.*

Яланах çакăн пек пулнă-ши? Е пире мĕскĕн çын шăпи патне пурнăç хăй илсе çитернĕ-ши? Несĕлĕмĕрсем пирки айван тесе калама чĕлхем çаврăнмасть. Чăваш тăхăмĕсен кун-çулĕнчи кирек хăш тапхăр та хăйсене майлă пуян, пысăк пĕлтерĕшлĕ событисемпе, ĕçсемпе палăрса тăрать. Хальхи вырăнта – сĕм вăрмансемпе тарăн çырмасен хӳттинче тĕплениччен чылай çӳренĕ чăвашсен мăн аслашшĕсем пăлхар-сăвар, хун тата ытти йăхсен тытăмĕнче тĕнче касса. Историе çĕнĕрен аса илме кирлех те мар пулĕ. Çĕнтерӳçĕ пулма çеç мар, мăшкăлне те чылай тӳсме тивнĕ тăван халăхăмăрăн патвар ывăлĕсен. «Тĕнчене этем чăваш пулса килет» ăнлавпа пурăннăскерсене, кунçулне ыттисен хушăвĕпе, вĕсем вĕрентнĕ тата ыйтнă пек «çĕнĕлле» йĕркелеме çăмăл пулман. Çитменнине апла тума тăрăшман та вĕсем. Акă хăçан çумăр пек тăкăннă чăваш юнĕ. Чи хастар та пултарулă, парăнман арçынсене çавапа çулнă пек каса-каса тăкнă, ял-хулана тустарнă, çунтарнă. Чи маттур арсем йăха малалла тăсайман. Апла паян пурăнакан чăвашсен мăн аслашшĕсем йăвашраххисем, айванраххисем-ши? Тен, çавăнпа эпир, ытти халăхсемпе танлаштарсан, пит хăюллă мар-ши?

Телее, ĕмĕрсем хушши чĕмсĕр пурăннă чăваш сассине пачĕ. Ăна çул уçаканĕсем те, тĕнчене тухма пулăшаканĕсем те тупăнчĕç. Мухтавлă Патриархăмăр Иван Яковлевич Яковлев тăван чĕлхепе вулама вĕрентрĕ, алфавит туса пачĕ. Çакă çеç-и? Чĕмпĕрте вăл уçнă чăваш шкулĕнче миçе çĕр-çĕр каччăпа хĕр ăс пухнă, вĕсем тата миçе пин-пин чăваша çутта кăларнă. Йывăрпа пулсан та чăваш ĕмĕрхи «ыйхинчен» вăраннă. Çав вăхăтри тата каярахри ытти улшăнусем, çĕкленӳсем пирки татах чарăнса тăма пулатчĕ. Вĕсем çинчен каламалли те, çырмалли те нумай.

Манăн вара хальхи вăхăта таврăнса хамăр пирки сăмах тапратас килет. Паянхи кун чăвашлăх ĕçне мĕнлерех пурнăçласа пыратпăр-ха? XX ĕмĕр вĕçĕнче наци юхăмĕ çĕнĕрен вăй илчĕ. Атнер Хусанкайăн витĕмĕ те, ячĕ-сумĕ те чылай пулăшрĕ çапла тума. Чăваш наци конгресĕн хастарĕсем çине тăнипе тĕнче тăрăх сапаланнă йăхташăмăрсен представителĕсене тăватă хутчен Шупашкара пуçтарма пултартăмăр. Вунă çул каялла «ЧР чĕлхесем çинчен» саккун та йышăнтăмăр. Çапла вара чăваш, тăван чĕлхе ял-район хутлăхĕнче çеç мар, Шупашкартах илтĕнме пуçларĕ. Ачамăрсене те тĕп хулара чăвашла вулама, çырма вĕрентеççĕ. Çакăн çинчен ĕмĕтленмен-и Иван Яковлев, кăвар чĕреллĕ поэтăмăр Çеçпĕл Мишши, халăхăмăрăн ытти сумлă ывăлĕ-хĕрĕ?

Ĕмĕт-тĕллевĕмĕрсем пурнăçа кĕчĕç тесе лăпланма кирлĕ мар. Такама килĕшсех каймаççĕ пирĕн çитĕнӳсем, ăнăçусем. Чĕлхе саккуннех илерха. Авă, тахăш енĕпе Мускава юрăймарăмăр та – хăй вăхăтĕнче пурне те тивĕçтернĕ, кирлĕ документ халĕ Раççей Конституцине «хирĕçлет»-мĕн. Хула шкулĕсенче те тăван чĕлхене вĕрентекенсем пĕр хушă пăлханса илчĕç. Вĕсем те темшĕн айăпа кĕме пултарнă. Паянхи кун патшалăх тытăмĕнче чăвашлăх ĕçне ЧР Культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерстви начар мар пурнăçласа пырать. Темиçе çул каялла ку енĕпе ятарлă пай та уçнă. Унăн усси куç умĕнчех. Сăмахран, министерство вăл е ку регионпа культура çыхăнăвĕсене йĕркелесе ярас тĕлĕшпе икĕ енлĕ килĕшӳсем тăвать. Ун пек хутшăнусем хальхи вăхăтра пайтах. Вĕрентӳ, ăслăлăх енĕпе те çакăн пек кал-кал ĕçленине курас килетçке. Ахальтен-и ЧНК IV Аслă пухăвĕнче çакăн пек йышăну тунăччĕ: **ЧР Министрсен Кабинечĕпе Вĕрентӳ министерствине наци шкулĕсене аталантарас тата Раççейре чăвашсем йышлă пурăнакан регионсене пулăшса вĕрентӳпе методика пособийĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе ятарлă пай уçма сĕннĕччĕ. Унтанпа вăхăт самай иртрĕ, анчах питĕ кирлĕ пай Вĕрентӳ министерствинче çав-çавах çук-ха. Хальлĕхе унччен пекех вĕрентӳри чăвашлăх ĕçне пĕр çын йĕркелесе пырать. Хăçанччен?**

Эпĕ, Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ пулнă май, мĕнлерех куратăп-ха чăвашлăх ĕçне? Чи пĕрремĕшĕ, кирли – наци çыхăнăвĕсене йĕркелени. Вĕсене вара тăван чĕлхе, йăла-йĕрке, культура вăйĕпе аталантармалла. Мĕн тума пултарать-ха ку енĕпе общество организацийĕ? Кĕсйи унăн пушă, транспорчĕ çук тата ытти те. Апла пулин те малаллах талпăнать. Çамрăксемпе ĕçлессине илес пулсан – иртнĕ çул Пĕтĕм тĕнчери чăваш эстрада юррисен «Кĕмĕл сасă» фестивальне йĕркеленĕ. Ун чухне республика тулашĕнчен 2–3 юрăç çеç хутшăнма пултарнă пулсан, кăçалхинче вара Пушкăртстанпа Тутарстан, Коми республикисенчен, Ульяновск, Мускав, Самар, Волгоград облаçĕсенчен килсе çитрĕç.

Пуш уйăхĕн 17–18-мĕшĕсенче чăваш наци кĕрешĕвĕ енĕпе IV уçă чемпионат иртрĕ. Ăна ЧНК тата Елчĕк ентешлĕхĕн пуçарăвĕпе йĕркеленĕ.

Яшсене чăваш кĕрешĕвĕпе кăсăклантарасси, ăна халăхра анлă сарасси ЧНК çамрăксемпе ĕçлекен пайĕн явапла ĕçĕ шутланать.

Вулакан çапла ыйтма пултарĕ: тата мĕн тума шутлатăп-ха, палăртатăпха эпĕ хам, ЧНКра шăпах çамрăксен ыйтăвĕпе ĕçлекен вице-президент? Тӳрех калатăп: тĕллев-ĕмĕт пысăк. Сăмахран, кашни çулталăк пуçламăшĕнче республикăра пурăнакан, ĕçлекен, чăннипех те чăваш чунĕллĕ, пултарулă çамрăксене тĕп хуламăрта (каярах, тен, ытти хула е район центрĕсенче те) пуçтарса чаплă уяв – çамрăксен балĕ ирттерес килет, республикăри Çамрăксен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕпе пĕрле Çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ умĕн Чăваш Енри яшсене хăйсене евĕр тĕл пулу-уява пухсан япăх-и? Унта шкулсенчи аслă классенче вĕренекенсене, студентсене, çар кафедрине çӳрекенсене, Аслă Отечественнăй, Афган, Чечен вăрçисене хутшăннă салтаксене, ветерансене, çав вăхăтрах çара каяссинчен пăрăнакансене пурне те явăçтармалла. Тĕрлĕ ыйту-тишкерӳпе пĕрлех вăл кану касĕ те пултăр. Акă Чăваш чĕлхи кунĕ çитсе тăчĕ. Çавна май массăллă информаци хатĕрĕсемпе пĕр пулса ЧНКпа, чăвашлăхпа, туслăхпа, тăванлăхпа çыхăннă викторина-конкурс («Çамрăксен хаçачĕ», «Тантăш») йĕркелеме пултартăмăр. Районсенче, ялсенче пултарулă юрăçсем нумай. Шел, пысăк сцена çине пурте тухма пултараймаççĕ: укçа-тенкĕ çукки, сăпайлăх чăрмантарать. Çавна май çак çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшатпăр, пĕр-пĕрне пулăшас тĕллевпе кассетăсем кăларма, концертсем йĕркелеме планлатпăр.

ЧНКн Çамрăксен премине парассине те йĕркелесе ямалла. ЧНК ĕçнехĕлне агитацилес, ун пĕлтерĕшне халăх хушшинче сарас тĕллевпе чăваш наци кĕрешĕвĕпе çеç мар, спортăн ытти енĕпе те Конгресăн парнисене илессишĕн ăмăртусем ирттересчĕ. Чăвашлăхăн тĕп утравĕ – Шупашкар. Инçетри йăхташăмăрсем пирĕн пата килсех тăраççĕ-ха. Çапах та тăван халăхăн мухтавлă çыннисемпе çыхăннă паллă хутлăхсене хамăрăн та кайса çӳремелле. Сăмахран, Пушкăртстанри Слакпуçпа

Хушăлкана, Ĕпхĕве, Тутарстанри Кăнна Кушкине, авалхи Атăлçи Пăлхар патшалăхне, Самар облаçĕнчи Ухенкел ялне. Тюмень, Оренбург, Чĕмпĕр тăрăхĕсенче те чăвашлăхпа çыхăннă паллă вырăнсем пур.

Районсенче хальлĕхе никамах та пĕлмен çамрăк художниксем ĕçлеççĕ. Вырăнти администрацисемпе пĕрле тĕп хулара вĕсен ĕçĕсен куравĕсене йĕркелеме шутлатпăр.

ЧНК сĕннипе, вĕрентнипе, хавхалантарса пынипе чăваш ывăл-хĕрне политика ĕçне те явăçтармалла, чăн-чăн чăваш политикĕ пулма хатĕрлемелле.

Палăртнă тĕллевсене пĕр çын вăйĕпе çеç пурнăçлаймăн. Пĕрне-пĕри ăнланса, пулăшса пырсан çеç ăнăçусем пулĕç. Пĕрле пулар, пĕрле ĕçлер.

Олег ВИКТОРОВ,
ЧНК вице-президенчĕ.
*«Хыпар», 25.04.2001, 75№.*

## НАЦИ ПРОРАБĔ

**(ЧНК президенчĕ Геннадий Архипов тата халăхăмăр умĕнче тăракан ыйтусем «Чăваш халăх Çурчĕ» çутинче)**

*Прорабсем кирлĕ, Чĕм (дух) прорабĕсем.*
*Андрей Вознесенский.*

«Манăн тăван халăхăмăра çапла чĕнсе калас килет, – тенĕччĕ Г.Н. Архипов «Хыпар» хаçата панă интервьюра (1998, çĕртме, 9), – чăвашлăхшăн тăрăшакансене тĕксе ан ярăр. Пирĕн пĕчĕк тăван çĕр-шыв тĕнчере пĕрре кăна. Çавăнпа кашни чăваш пĕрле, хамăр çĕр çинче хуçа пулмалла».

Чăваш наци конгресĕн президенчĕ урлă XXI ĕмĕрти чăваш идейи сас парать. Ун тĕп шухăшĕ «тымар» ăнлавпа çыхăннă. Чăвашлăхăн, пурăнас тесен, тымарланмалла, кил-çурт çавăрмалла... Урăхла май çук. Тĕнче пур çĕрте те пĕр: «вырăс, тутар, чăваш – пурте çын», «маншăн пур пĕрех, ик айкки те тăвайкки» тесе текех юрлаймăн». «Тĕнче мана чăваш пулма хушать», – тенĕччĕ Анатолий Тимофеев-Ыхра. Çыравçă та, ЧНК президенчĕ те хăйсем сисмесĕрех «тĕнче шайĕнче» шухăшлаççĕ. Калăпăр, Мартин Хайдеггер (1889–1976) çулĕпе утакансем, тен, вĕсене юлташ тунă пулĕччĕç.

«Экономика вăйлă пулмалла теççĕ. Паллах, хирĕçлеместĕп. Анчах чĕлхесĕр халăх кама кирлĕ? Чĕлхене сыхласа хăварасси Президентăн, парламентпа Правительствăн тĕп тивĕçĕ пулмалла. Ун чухне вĕсем халăхшăн ĕçлеççĕ теме пулать».

«Чĕлхе – пурнăç (пур-ăнăç е пур-ăн-ĕç) çурчĕ тата этем пурăнмалли вырăн», – тет Мартин Хайдеггер «Гуманизм пирки çырнă çырура» (1947). Нимĕç философĕ çак кил-çурта сыхламалли пирки калать. Çакăнта кăна, ун шучĕпе, чăнлăх упранать тата уçăлать.

«Эпĕ ăна вирьял пулнăшăн хисеплеместĕп, – тенĕччĕ В. Станьял (2001 çулхи кăрлачăн 5-мĕшĕсенче калаçнинчен). – Ку вăхăтра Архипов пире суту-илӳ, укçа тумашкăн кирлĕ. Çуртне юсамалла, телефонсем илмелле. Пире халь идеолог кирлĕ мар – практик кирлĕ».

«Чăваш халăх çурчĕ» – ахаль çурт çеç мар. Вăл çул маякĕ пулассăн туйăнать. «Ирĕклĕ кайăк пек пулса, пур çĕре те çитес килет», – тесе туртăннă чăваш чĕри ĕмĕр хушши. «Чăваш çĕр-шывĕ – кайăк йăви пек, – çырнă Юрий Скворцов кун кĕнекинче (Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивĕ, 5 уйр., 905 упр. ед., 353 инв. №. Вера Никифорова тупса палăртнă.) – Унта çуралнă чĕпĕсем пурте тĕнчене вĕçсе кайнă – хăйсен йăвине маннă, çунат хуçăлнисем çеç йăвисене пĕлеççĕ, вĕсем те вĕçсе каясшăн... Йăви çывăхĕнчен вĕçсе кайма çунаттисене тӳрлетесшĕн çеç çаврăнса çӳреççĕ. Юратмаççĕ хăйсен йăвине, хăйсен халăхне, йăлисене, юррисене».

«Йилер китĕ» – «çилсем кайрĕç» теççĕ мишерсем чăвашсем кайнине курсан», – тет Владимир Карсаков. Çил хăвала-хăвала ывăнтăмăр пулас. Киле таврăнма, тымар яма вăхăт. Тĕнчи хăй паян çакна ыйтать. Килте пурăнакан чăваш – ак еплерех янрамалла пек çĕнĕ ĕмĕрти чăваш идейи.

Мартин Хайдеггер тĕнче касса, чăвашлăхран тарса çӳренисене сăпайлăха та вĕрентмелле пек: ытла та вĕсем тепĕр чух хăй килĕнче пурăнакан чăваш çине çӳлтен пăхса калаçаççĕ (текста вырăслах паратăп, вĕсен – амăш чĕлхине манаçма пуçланисен – аллине лекессе шанса):

«Возвращение к делу мысли не получится, если теперь пойдет в ход болтовня об «истине бытия» и о «бытийной истории». Все зависит единственно от того, чтобы истина бытия нашла себя в слове и чтобы мысль дала ей это слово. Возможно, нашей речи потребуется тогда не столько захлебывающееся многословие, сколько простое молчание. Только кто из нас, нынешних, дерзнет вообразить, что его мыслительным опытам сродни тропы молчания? Было бы еще очень хорошо, если бы нашим удалось хотя бы указать на истину бытия, да и то как на задачу осмысления. Мысль тогда по крайней мере ушла бы от пустых догадок и домыслов ставшему теперь таким редким рукоделью письма. Дельные вещи, в которых что-то есть, пусть они и не предназначены для вечности, даже в самое запоздалое время приходят все-таки еще своевременно» (Хайдеггер М. Время и бытие: Статьи и выступления. М.: Республика, 1993, 209 с).

Юрий ЯКОВЛЕВ.
*«Хыпар», 30.11.2001, 221№.*

## «ЧĂВАШ ТĔНЧИ» РАÇÇЕЙ ШАЙĔНЧИ ХАÇАТ ПУЛТĂР

*Çĕн йĕркелӳ тапхăрĕ пуçлансан пичет ирĕклĕхĕпе усă курса тĕрлĕ регионсенчи чăвашсем хăйсен хаçачĕсене кăларма тытăнчĕç. Паян Тутарстанра – «Сувар», Пушкăртстанра – «Урал сасси», Ульяновск облаçĕнче – «Канаш», Самар облаçĕнче «Самар Ен» хаçатсем тухса тăраççĕ. Мускавсем 2000 çулта «Ентешсем» ятлă хыпар-хăнар бюллетенĕ кăларчĕç. Кăçал ун икĕ номерĕ тухнă, виççĕмĕшне кĕтетпĕр. Ытти регионсенче те унашкал бюллетеньсем кăларма ĕмĕтленекенсем пур-тăр. Мускавсен пурăна киле хаçат шайне хăпарас шанчăкĕ пур.*

Чăваш наци юхăмĕ çĕн йĕркелӳ пуçламăшĕнче хăйĕн массăллă информаци хатĕрне йĕркелесшĕнччĕ. Чăваш аталану партийĕпе Чăваш наци конгресĕ «Аталану» хаçатăн икĕ-виçĕ номерне калăплама пултарайрĕç. ЧОКЦ пĕр хушă «Вучах» хаçата кăларкаларĕ. Шел, икĕ хаçачĕ те чăнласах массăллă информаци хатĕрĕ пулса тăраймарĕ – путланчĕ. Иккĕшĕ те (кăларакансем укçа тупайманнипе) хупăнчĕ.

Юлашки çулсенче чăваш тĕнчишĕн питĕ кăтартуллă пулăм – «Хыпар» Издательство çурчĕ йĕркеленни, «Хыпар» хăй çемйине ӳстерсе пыни – айккинчен сăнакана тĕлĕнтерет. «Хыпар» «ачисем» – «Çамрăксен хаçачĕ», «Чăваш хĕрарăмĕ», «Ачапча», «Ар», «Сывлăх», «Кил-çурт, хушма хуçалăх», «Ыйту-хуравпа» «Вопрос-ответ» – вăй илсех пыраççĕ. «Чăваш тĕнчи» те, хальлĕхе «Хыпар» ăш-варĕнче амаланаканскер, çитес çулсенче уйрăм кăларăм пек калăпланĕ-и?

Малашлăх мĕнлерех-ши? Чăвашла хаçатсен йышĕ ӳлĕм те ӳссе пырĕ-ши? Ӳсмелĕх талккăш пур-ха: Питĕр, Сарă ту, Тюмень... «Чăваш тĕнчи» пĕтĕм тĕнчери чăвашсен хаçачĕ пултăрччĕ. Малтанлăха вăл Шупашкартах тухса тăрĕ-ха. Анчах, ман шутпа, пĕр пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн вăл Мускавра тухса тăнин пайти ытларах пулмалла пек. Пĕр япала пирки нимĕн чухлĕ те иккĕленместĕп – «Чăваш тĕнчи» Федераци шайĕнчи хаçат пулмалла, Федераци бюджетĕнчен пулăшу илсе тămалла. Унсăрăн унăн кун-çулĕ пепкелĕх тапхăрĕнчех таталĕ. Вăл уралансан Мускав, Питĕр, Сарă ту, Тюмень, Красноярск тата ытти регионсенчи чăвашсен хăйсен хаçачĕсене кăларас хуйхи те иртмелле.

Паянхи куна таврăнам-ха. Чăваш Республикин хаçачĕсем, питĕ шел те, республика тулашĕнче сахал саланаççĕ. Çакăн йӳтĕмĕ нумай. Чи пысăкки – çыхăну (почта) тăкакĕсем вышкайсăр хăпарса кайни. Вĕсем паян регионта хаçат кăларса салатасçинчен те пысăкрах. Пĕтĕм тĕнче илтмелле кăшкăрас килет: пулма пултараймасть! Ман шутпа, РФ Çыхăну министерстви хăйĕн монополийĕпе усă курса çырăнакансене çаратать. Çитменнине, регионсенче тухакан хаçатсем ытти регионсенчи çырăнакансем патне 10–20 кун кая юлса çитеççĕ. Паян чӳк уйăхĕн 25-мĕшĕ; «Хыпарăн» эпĕ илнĕ юлашки номерĕ 3-мĕш числора тухнă; хаçатăн тепĕр 4 номерне эпĕ 29-мĕш числора илмелле; вĕсенчен чи маларахри 6-мĕшĕсенче тухни пулĕ; апла, çав номере эпĕ 23 кун иртсен кăна алла илĕп. Çапла начар ĕçленĕшĕн пысăк укçа шăйăрни

кама тарӑхтармӗ? РФ Ҫыхӑну министерстви сире кивелнӗ таварпа сутӑ тӑвакана аса илтермест-и?

Куршӗ регионсем пӗр-пӗрин кӑларӑмӗсене сарасси пирки ятарлӑ килӗшӳсем тусан аванччӗ. Ун чух кӳршӗ регионсем пӗр-пӗрин хаҫачӗсене вырӑнти кӑларӑмсем пек ҫырӑнтарма пултарӗччӗҫ, ҫырӑнтару хакӗ те ытла пысӑк пулмӗччӗ. Ҫакӑн пек килӗшӳ тусан Тутарстанра тата Чӗмпӗр Енре пурӑнакан 250 пин чӑвашран сахалтан та пӗр 2—3 пинӗ Чӑваш Енре тухса тӑракан хаҫатсене ҫырӑнса илме тытӑнӗҫ. Уйрӑмах ача-пӑча кӑларӑмӗсемшӗн пӗлтерӗшлӗ ку: чӑваш ачи валли ятарлӑ хаҫат-журнал Чӑваш Енсӗр пуҫне нимле регионра та тухса тӑмасть.

Кӑҫал «Канаш» хаҫатра (26 №) Мелеккес таврашӗнчи 4 район чӑвашӗсем валли пӗр хаҫат кӑларса тӑрас ыйтӑва хускатни ҫинчен ҫырнӑччӗ. Кирлех-ши вӑл? Ӑна кӑларса тӑма тӑкаклас вӑя тата укҫана «Канаш» тиражне ӳстерме ярсан лайӑхрах пулмӗ-ши? Кӑларма тӗв тунӑ хаҫатӑн ӗҫне-пуҫне «Канаш» ытла нушаланмасӑрах туса пыма пултарас пек туйӑнать. Ҫакӑн валли унӑн майсем ҫителӗклӗ, хатӗр кадрсем пур. Апла, ҫав тӑватӑ районти ентешсен пурнӑҫӗ ҫинчен ытларах материал кӑна пичетлемелле.

Хаҫатсен пархатарӗ вӗсен йышӗнче мар, сумӗнче. Сумӗ вара вӗсен халӑхӑн тӗрлӗ сийӗсен, пайӗсен интересӗсене туллин ҫутатса пынинчен килет. Кирлӗлӗхне кура — тиражӗ. Пирӗн пек ытла йышлах мар халӑхсен миллиона кармашакан тиражлӑ хаҫат пулас ҫук. Уйрӑмах халӗ, радио, телекурӑм тата Интернет тапхӑрӗнче. Хаҫатсем паян хӑйсен унчченхи социаллӑ тивӗҫӗн самай пысӑк пайне ҫак электронлӑ информаци хатӗрӗсене пачӗҫ. Хаҫатсемшӗн темле те, ҫапах та халӑхшӑн ку — ырӑ пулӑм. Хаҫат пӗлтерӗшӗ пӗрех анлӑ-ха. Ҫавӑнпа та регионсен хушшинчи администраци чиккисем хаҫатсен тиражӗсене чакаракан чӑрмавсем пулни пире пӑшӑрхантармалла. Пирӗн ҫав чикӗсене йӑштарасчӗ. «Канаш» хӑйӗн вӑйӑм картине — Пенза облаҫӗнчи, «Самар ен» —Сарӑ ту, «Урал сасси» — Оренбург, «Сувар» Удмуртипе Мари Эл чӑвашӗсене илейсен епле лайӑх пулмалла. Чӑваш тӗнчишӗн регионсен чиккисем каҫайми чӑрмавсем ан пулччӑр.

Петӗр МУЛЬТИЕРСЕМ. Мускав хули.
*«Хыпар», 25.12.2001, 234№.*

## ШУПАШКАР ХУЛА АДМИНИСТРАЦИ ПУҪЛӐХӖ А.А. ИГУМНОВ ПАТНЕ ЯНӐ УҪӐ ҪЫРУ

*Шупашкар – чӑваш халӑхӗн тӗп хули. Эсир ҫакӑнпа килӗшетӗр пулӗ тетпӗр, Анатолий Александрович. Ҫак ҫырӑва эсир хӑвӑра хула пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлассинчен хӑтарма ыйтса заявлени ҫыричченех хайланӑччӗ. Чӑвашӑн тӗп хулинче чӑвашсене хисепе хуманнине шута илсе... Халӗ, сирӗн заявлени хыҫҫӑн, кӑшт улшӑнусем кӗртсе хамӑр шухӑша уҫҫӑн пӗлтерес терӗмӗр. Мӗншӗн тесен сирӗн заявлени вӑл, пирӗн шутпа, политика вӑййи кӑна. Эсир ӑна каялла илессине эпир халех уҫҫӑн курса тӑратпӑр. Ҫакна хӑш-пӗр хаҫатсем Сире турӑ вырӑнне хурса, каҫса кайса ырлани те уҫҫӑнах ҫирӗплетсе парать.*

Вӗсен шухӑшӗпе — чӑваш халӑхӗ хальлӗхе тӗп хула ертӳҫи пулмалӑх тивӗҫлӗ ҫынна ҫуратса ҫитӗнтерейммен имӗш. Пирӗншӗн пулсан — Эсир заявлени ҫырни — сивӗ те мар, вӗри те мар. Эпир уншӑн хурланмастпӑр та, савӑнмастпӑр та. Мӗншӗн? Эсир чӑваш халӑхӗшӗн ют ҫын пулнине ӗҫӗрсемпе пӗрре мар ҫирӗплетсе патӑр. Суйлав вӑхӑтӗнче сире ырласа чупманшӑн (ЧР Президенчӗн администрацийӗн ертӳҫи ыйтнипе сире хирӗҫле ӗҫлемен пулин те) Эсир Чӑваш наци конгресне тӑшмансен шутне ҫырса хутӑр. Конгресс пӗтӗм вӑй-хӑватпа Сире хирӗҫле ӗҫленӗ пулсан эсир паян, тӗрӗссипе, унта лараттӑрччӗ-ши? Иккӗленетпӗр... Сӑмах май каласан, ЧР Президентне те эпир суйлавсенче каҫса кайса мухтани нихӑҫан та пулман, апла пулин те пире уншӑн никам та ӳпкелемен, тивӗҫлӗ ыйтусене яланах пӗрле татса пама тӑрӑшнӑ. Чӑваш халӑх ҫуртне йӗркелесе хута ярас тӗллевпе ирттернӗ НИМЕНЕ 42 пин ытла ҫын хутшӑнчӗ. Хула администрацийӗ аякра тӑчӗ. Чӑваш халӑхне хисепленине пӗлтерчӗ-и ҫакӑ?

Игумнов хула пуҫлӑхӗнче ӗҫлеме пултарайман ҫын тесшӗн мар эпир. Анчах кашни ӗҫе хӑйӗнпе кӑна ҫыхӑнтарса мухтанни, телевидени, радио урлӑ сӑлтавсӑр шавлани вырӑнсӑр тесе шутлатпӑр. Хӗрлӗ лапам, залив, Атӑл хӗрри хула халӑхӗшӗн канмалли чи илемлӗ вырӑнсенчен пӗри пулса тӑчӗ. Хӑй вӑхӑтӗнче ЧР Президенчӗ Н.В. Федоров ҫак ӗҫе тума тӗллев лартман пулсан ҫапла ҫӗнелетчӗ-ши хулан тӗп вырӑнӗ? Пӗтӗм Правительство ӗҫленӗ хула пуласлӑхӗшӗн, илемлӗхӗшӗн. Тӗрӗс мар-и ҫакӑ? Хулана ҫут ҫанталӑк газӗпе, электроэнергипе тивӗҫтерес ыйтусене те Правительство хӑй ҫине илнӗ. Ку тӗлӗшпе пирӗн ҫакна калас килет: ЧР Правительствин Шупашкара пулӑшас тесе кӑна мар ӗҫлемелле, ял ҫыннисем, ытти хуласемпе районсем ҫинчен манас марччӗ.

Хулана вӑхӑтра тасатса тӑни, паллах, хула ертӳҫисенчен нумай килет. Анчах, чи малтанах, ҫакна чӑваш халӑхӗн ӗҫченлӗхӗпе ҫыхӑнтармалла. Паян хула урамне тасатакан «шӑпӑрсем» пӗтӗмпе тенӗ пекех чӑваш чӗлхипе калаҫакан ҫынсен аллинче. Тен, ҫавӑнпа та Шупашкарта чӑваш чӗлхине, культурине хисеплеме васкамаҫҫӗ? Хулан малашнехи сӑн-сӑпатне, архитектурине чӑвашларах тӑвас ӗҫе специалистсемпе сӳтсе явма ыйтсан: «Чӑвашла архитектура ҫук», — терӗ А. Игумнов. Пирӗншӗн, чӑваш ҫыннисемшӗн, чӑвашсен тӗп хулине паянхи кун Чулхула, Чӗмпӗр, Владимир е урӑх вырӑс хулисенчен уйӑрмалла мар пӗр пек сӑн-сӑпатпа туни мӗн тума кирлӗ? Кама интереслентерӗ хула чӑвашлӑхран ют пулсан?

Ку кӑна мар. Шупашкарӑмӑр чӑваш ҫыннине ҫӑтса яракан, пӗтерекен хула пулса тӑчӗ. «Чӑваш чӗлхи мӗн тума кирлӗ?» текен идеологи хула администрацийӗнче те, вӗренӳ заведенийӗсенче те халӗ те пуҫ пулса тӑрать. Шкулсенче, сӑмахран, акӑлчан чӗлхине вӗрентме яланах майсем пур, чӑваш чӗлхишӗн — укҫа ҫук.

Хула бюджетӗнчен радио, телевидени, хаҫат-журнал валли чӑваш халӑхӗ те налук урлӑ хывакан укҫана ҫӗр-ҫӗр пин тенкӗ уйӑрса параҫҫӗ. Анчах вӗсенче пӗр чӑваш сӑмахӗ те ҫук. «Чӑваш ҫынни иккӗмӗш сортлӑ» тенине пӗлтермест-и ҫакӑ? Ҫакӑ 60 процент чӑваш пурӑнакан Шупашкарта! Ҫапла вырӑсланса пырать чӑваш, чӑвашла калаҫакан ҫынсен шучӗ тӗлӗнмелле хӑвӑрт чакать.

Раҫҫейре шучӗпе виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑнакан халӑх шӑпи пирки сӑмах пырать кунта. Шухӑшлаттарать-и ҫакӑ хулан хальхи пуҫлӑхне? Ҫук пулӗ. Унсӑрӑн хула вӗрентӳ управленийӗн ертӳҫинче те, шкул директорӗсен хушшинче те, тӗпрен илсен, чӑвашла пӗлмен ҫынсем пулмӗччӗҫ, шкулсенче чӑваш чӗлхине ячӗшӗн эрнере пӗрер е икшер урок вӗрентме ирӗк парса чӑваш чӗлхинчен кулмӗччӗҫ. «Чӗлхе пӗтсен халӑх пӗтет» тенине Игумнов пӗлмест мар пулӗ.

Хулари предприятисемпе учрежденисен ячӗсене икӗ чӗлхепе мӗнлерех ҫырас пирки «ЧР чӗлхесем ҫинчен» саккунра 10 ҫул каялла уҫӑмлӑн палӑртнӑ пулин те хула чиновникӗсем ӑна пурнӑҫлама васкамаҫҫӗ. Саккуна сунтӑха чиксе хӑйсене кӑмӑла кайнӑ пек инструкци ҫырнӑ та — пурӑнаҫҫӗ укҫа-тенкӗ пуҫтарса. Хӑнк та тумаҫҫӗ! Саккунпа килӗшсе тӑман пулӑмсем вӗсене пачах та хумхантармаҫҫӗ. Ҫапла чӑваш чӗлхинчен тӑрӑхласа, кулса пурӑннипе хулан пӗр депутачӗ, хула администрацийӗн ҫакӑншӑн яваплӑ пӗр чиновникне малтанласа темиҫе те асӑрхаттарнӑ хыҫҫӑн, тепрехинче чышкипе сӑмсаран та лектернӗ. Мӗн тери шӑв-шав ҫӗклерӗ Игумнов ун чухне. Депутата судпа айӑпларӗҫ, анчах ӗҫ-пуҫ мӗншӗн ҫапла пулса тухни никама та хумхантармарӗ. Ӗпхӳ, Хусан хулисенче ку ыйтӑва тахҫанах татса панӑ ӗнтӗ, чӗлхесем ҫинчен калакан саккунсене йышӑннӑ та — пӗр сӑмахсӑрах пурнӑҫланаҫҫӗ, саккуна пӑсакансене штрафсем парса явап тыттараҫҫӗ. Шупашкар хула администрацийӗнче вара ҫак ӗҫсене те ЧР Президенчӗпе ЧР Правительстви туса парасса шанса пурӑнаҫҫӗ.

Ҫакна шута илсе ҫапла пӗлтеретпӗр: Чӑваш наци конгресӗ чӑвашсен тӗп хулинче — Шупашкарта — чӑваш чӗлхине, культурине, чӑвашлӑха хисеплеменнипе килӗшме пултараймасть. Чӑваш халӑхӗн шӑпи, пуласлӑхӗ пирки сӑмах пынӑ, ҫак ӗҫсенчен Эсир, Анатолий Александрович, аякра тӑнӑ чухне эпир Эсир тытса пыракан политикӑна сивлетпӗр.

Чӑваш наци конгресӗн Президиумӗ.
*«Хыпар», 22.01.2002, 12№.*

## «ТИЛХЕПЕ» ÇАМРĂКСЕНЕ КУÇАТЬ

*Тутарстанра 135 пин чăваш пурăнать. Çакă – 1989 çулхи çырав (перепись) тăрăх. Ун умĕнхи кăтарту вара 160 пинпе танлашнă. Кăçалхи çырав тата мĕн палăртĕ? Вăхăт çитсен курăпăр. Чăвашсен йышĕ чакса пыни, тĕрĕсрех каласан, «вырăсланса» тата ытти халăх çыннисене «çаврăнни» унти йăхташсене хăйсене те канăçсăрлантарать. Çак ыйту çеç мар, тăван чĕлхепе культурăна, йăла-йĕркене упраса хăварас, çĕнĕрен чĕртсе ярас тени 10 çул каялла Хусанта Чăваш общество культура центрĕ йĕркелесе яма хистенĕ.*

1997 çулхи çĕртме уйăхĕн 4-мĕшĕсенче Чăваш наци культура автономине (ЧНКА) туса хунă. Унтанпа кĕçех пилĕк çул çитет, çавна май Тутарстанри йăхташăмăрсем иртнĕ эрне кун Хусанти Халăхсен туслăхĕн çуртĕнче ЧНКАн отчета суйлавăн иккĕмĕш конференцине ирттерчĕç. Унта Чăваш Енрен Чăваш наци конгресĕн Аслă пухăвĕн председателĕ **В.П. Станьял**, ЧНК вице-президенчĕ, «Хыпар» Издательство çурчĕн генеральнăй директорĕ-тĕп редакторĕ **А.П. Леонтьев** тата ыттисем хутшăнчĕç.

Конференци делегачĕсемпе хăнасене Тутарстан Республикин Президент Администрацийĕн наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пай ертÿçи **И.В. Терентьева саламларĕ**. Ирина Васильевна хăйĕн сăмахĕнче XX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсем Тутарстанра тымар янă халăхсен наци юхăмĕсем (çав шутра чăвашсем те) вăй илнипе, хăйсен культура обществисемпе центрĕсене йĕркеленипе палăрса тăнине, республика ертÿçисем вĕсене кирлĕ тарăн пулăшса пынине палăртрĕ.

1989 çулта ЧНКАна «Сувар» хаçатăн тĕп редакторĕ **А.К. Иванов** ертсе пыма пуçланă. Çавна май юлашки пилĕк çул хушшинче пурнăçланă ĕçсем пирки конференцире каласа кăтартаканĕ те вăлах пулчĕ. Александр Кириллович докладĕнчен мĕн пĕлтĕмĕр-ха? Чăваш наци культура автономийĕн ĕçĕ-хĕлĕ ытларах «Сувар» урлă пурнăça кĕрсе пынине. Хальхи вăхăтра Тутарстанра туха тăракан чăваш хаçатне республикăри 6080 çемье çырăнса илет. Коллектив чăвашлăх туйăмĕпе писĕхсе çитнĕ çамрăксемпе (Константин Малышев, Вера Александрова, Ирина Гордеева, Нина Юнгерова, Сильвия Бултыкова тата ыт.те) йышланнă. Вĕсем районсемпе ялсене тăтăшах тухса çÿрени унта пурăнакансен кăмăлшухăшне тарăн пĕлме пулăшать. Çав вăхăтрах вырăнта чĕлхе, культура, йăла-йĕркепе çыхăннă ыйтусене хускатма та май парать.

А.К. Иванов «Шурăмпуç» журналăн шăпи пирки те чарăнса тăчĕ. «1919–1921 çулсенче вăл Хусанта тухса тăнă, пурĕ виçĕ номер кун çути курнă. 1994–1995 çулсенче çĕнĕрен чĕрĕлчĕ, пĕр номерĕ пичетленчĕ. Каллех путланчĕ. Çавăн хыççăн çак ĕçе хамăр çине илме тиврĕ, иртнĕ çулхи раштав уйăхĕнче унăн виççĕмĕш номерне вулакан патне çитертĕмĕр», – терĕ Александр Кириллович.

Докладçă çавăн пекех республикăри чăваш ялĕсенчен кашнинчех фольклор ушкăнĕсем йĕркеленине, Анат Камăра чăваш гимназийĕ ăнăçлă ĕçленине, çамрăксен эстрада коллективĕсене чăмăртас тĕлĕшпе çителĕксĕр вăй хунине, вырăнти чăваш çыравçисене пĕрлештерсе тăракан ушкăн çуккине асăнчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа, Хусанти П. Хусанкай ячĕллĕ чăваш общество культура центрĕ (ЧОКЦ) 10 çул тултарни пирки, унăн ертÿçи **Н.С. Степанцев** тухса калаçрĕ. Николай Степанович центрăн пĕрремĕш хастарĕсене Николай Патшина, Петр Мирова, Николай Сорокина, Герман Круглова, Неля Козловăна, Василий Дедушкина, Владимир Данилова, Анатолий Самаренкина, Леонид Серебрякова тата ыттисене те ырăпа аса илчĕ. Вăл вăхăтра центрăн тĕп тĕллевĕ республикăра 1963 çулччен тухса тăнă «Хĕрлĕ ялав» чăваш хаçатне çĕнĕрен уçасси пулнă. Ĕмĕт пурнăça кĕнĕ: 1993 çулхи пуш уйăхĕнче ТР Министрсен Кабинечĕ «Сувар» хаçат йĕркелесе ярасси пирки йышăну тунă.

ЧОКЦ – Чăваш наци культура автономийĕн учредителĕ. Халĕ вĕсен пĕрлехи ĕçĕ мĕнре палăрса тăрать-ха? ЧНКА çумĕнче хĕрарăмсен «Пехил» клубĕ, çамрăксен «Асамат» пĕрлешĕвĕ ĕçлеççĕ. Паянхи кун Тутарстанри 148 чăваш шкулĕнче 10 пин ача пĕлÿ илет. Икĕ çулта пĕрре фольклор ансамблĕсен «Чăваш шăпчăкĕ» конкурсĕ иртет. Çитменлĕхсенчен, туса çитерейменнисенчен – 12,5 пин чăваш пурăнакан Хусанти вырсарни шкулĕсем ĕçлеме чарăннине, паллă ентешсен кун-çулĕпе çыхăннă материалсене упракан музейсемпе япăх çыхăну тытнине, республикăн ертсе пыракан тытăмĕнче йăхташăмăрсем сахалрах пулнине тата ыт. те палăртрĕ Н. Степанцев. Тухса калакансем, докладçăсен сăмахĕсемпе килĕшнипе пĕрлех, туса çитермен япаласене ытларах хускатрĕç. **Н.М. Дворов** çыравçă, сăмахран, чăваш çыравçисен ушкăнне халĕ те йĕркелейменни тарăхтарать. ЧНКАн Лаиш районĕнчи уйрăмĕн ертÿçи **В.Н. Егоров** республикăри радиопа чăвашла паракан передачăсен вăхăтне (П. Миров йĕркелесе пырать) пысăклатма кирлине, çавăн пекех вырăнти телевиденипе чăваш кăларăмĕсем йĕркелесе яма вăхăт çитнине палăртса каларĕ. **К.А. Малышева** çамрăксен пĕрлешĕвĕ çителĕксĕр ĕçлени канăç памасть. Анат Кама хулинчи чăваш гимназийĕнчи **Г.М. Спиридонова** вĕрентекен чăваш хăйĕн тăван чĕлхинчен вăтаннин сăлтавне палăртма тăрăшрĕ. Пурĕ 16 çын сăмах илчĕ. Шупашкар хăнисенчен **А.П. Леонтьевпа В.П. Станьял** тухса калаçрĕç.

**А.П.Леонтьев** хăйĕн сăмахне акă мĕнрен пуçларĕ:

– Хусанта Н.В. Никольский пуçарнипе «Хыпар» хаçат тухма пуçланă. Çав çурт çине (Чернышевский урамĕнче вырнаçнă) 1996 çулта Асăну хăми вырнаçтарнăччĕ. Паян унта чарăнтăмăр, пуç таяс терĕмĕр. Анчах Асăну хăми çук-мĕн. Çурта пăсма пуçланă. «Хыпар» тымарне татас марччĕ, ун вырăнне çĕкленекен çурт çинче те Н.В. Никольскипе «Хыпара» аса илтерекен хăма пуласса шанас килет.

Алексей Петрович çавăн пекех «Хыпар» Издательство çурчĕн ĕçĕхĕлĕпе тĕплĕн паллаштарчĕ, чăваш халăх хаçачĕпе туслă çыхăну тытакан В.А. Дедушкина, П.М. Мирова, Л.П. Серебрякова тата А.К. Иванова «Хыпарăн» Хисеп хучĕпе чысларĕ.

ЧНК Аслă пухăвĕн председателĕ **В.П. Станьял** кăçалхи юпа уйăхĕнче иртекен V Аслă пухăвăн тĕллевĕсем пирки чарăнса тăчĕ. Тĕнче умне хамăрăн философипе, ăс-пурлăхпа, этнотĕнпе тухас тесен кунти йăхташăмăрсен хăш енĕпе ытларах ĕçлемеллине палăртрĕ. «Сувар» хаçат тухни лайăх, çавăнпа пĕрлех унăн «шăлĕ» çивĕчрех пултăрччĕ, чĕрĕлĕх кирлĕ терĕ. Тутарстан чăвашĕсен энциклопедине хатĕрлеме вăхăт çитнине те палăртрĕ. Чăвашлăх ĕçĕнче палăрнисен пĕр ушкăнне ЧНК Тав хучĕпе наградăларĕ.

ЧНКАн çĕнĕ Канашне суйланă хыççăн мĕн калама пулать-ха? Ун йышне çамрăксене ытларах явăçтарнине. Пуласлăх вĕсенче пулнине аван ăнланаççĕ кунта. Иккĕмĕшĕнчен, чăвашлăх ĕçне аслă ăру çыннисем çеç туса пырсан вĕсем хыççăн кам пурнăçлĕ ăна? Çапла кăçалхи пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнчен Тутарстанри Чăваш наци культура автономийĕн «тилхепине» Аксу районĕнче çуралса ÿснĕ çамрăк ăсчаха, философи ăслăлăхĕсен докторне, ăслăлăхпа информаци центрĕн генеральнăй директорне **К.Г. Яковлева** шанса пачĕç. Константин Геннадьевич ун умĕн ертсе пынă юлташĕсен ĕçне малалла тивĕçлĕ шайра пурнăçласа пыма, ЧНКАн сумне çĕклеме, ун тавра хастар чăвашсене ытларах явăçтарма шантарчĕ. Ун çумĕсем те пултаруллă çамрăксен: Е.А. Токшикова тата К.А. Малышев.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 26.03.2002.*

## МУСКАВРИ ЕНТЕШСЕМ ПОЛИТИКĂПА АЙКАШМАÇÇĔ

*Тахçанах палăртнă: çын чи малтан чун илемĕпе пуян. Çавна пулах эпир пурнăçăн йывăрлăхĕпе кичемлĕхне çĕнтеретпĕр, пĕр-пĕрне кăмăллатпăр, юта кайсан та чуна çывăх çынсене шыратпăр. Ентешлĕх туйăмне илес-тĕк, паллах, чăвашăн кăна мар хаклă вăл. Анчах та çурри ытла республика тулашĕнче пурăнакан халăхăн унăн пĕлтерĕшĕ мĕнле пысăк пулнă пирки калама та кирлĕ мар-тăр. Выçлăх çулĕсенче мал енне (Тухăçа) кайнă чăвашсем тĕрлĕ çĕртен пулсан та пĕрлешнĕ, çĕнĕ çĕрте çĕнĕ чăваш ялĕ хывнă. Ку туртăм пысăк хуласенче пурăнакансемшĕн те ют пулманни коммунистсен влаçĕ йăшсассăн уйрăмах лайăх палăрчĕ. Облаç-республика центрĕсенче, Мускавпа*

*Питĕрте, ыттисенни пекех, тепĕр чух – маларах та, чăвашсен те наци культура обществисем, каярах – наци культура автономийĕсем тĕвăленчĕç. Паллах, кашни енре – унăн хăйĕн çул-йĕрĕ, çапах та нумай тĕлте вĕсем вырăнти чăвашсене пĕрлештерекен культура вучахĕ пулса тăни курăнать.*

Нумай пулмасть çеç-ха эпир Раççейĕн тĕп хулинче пултăмăр, Мускаври чăваш наци культура автономийĕн ĕç-хĕлĕпе паллашрăмăр.

Пире унта Чăваш Республикин РФ Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представителĕ Н.И. Григорьев ертсе кайрĕ. Наци культура автономийĕн хăйĕн офисĕ çук-ха, çавăнпа эпир унăн ертÿçин Анатолий Иванович Ивановăн ĕç вырăнне çул тытрăмăр. Вăтам çулсенчи Анатолий Иванович телевидени, радио, шоу-бизнес продукцийĕ кăларакан уйрăм харпăрлăхри студи пуçлăхĕ – продюсер. Ентешлĕх ĕçĕнче ăна пулăшса пыракан Альбина Шашина та кунтах вăй хурать. Хăйĕн специальноçĕпе Шашина – филолог, журналист, Чăваш патшалăх университетне пĕтернĕ, Мускаври чăвашсен «Ентешсем» хаçат редакторĕ.

Мускаври чăвашсен общество майĕпе йĕркеленнĕ организацисем темиçе. Ара унта пурăнакан чăвашсен шучĕ те палăрмаллах пысăк, официаллă 30 пин шутланать, тĕрĕссипе вара, облаçне те шутласан, 50 пинрен те иртет-мĕн. А.И. Иванов ертсе пыракан пĕрлешÿсĕр пуçне кунта Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнче йĕркеленнĕ наци культура автономийĕсене (пурĕ вĕсем 12) пĕрлештерекен «Раççейри чăвашсем» наци культура автономийĕ (ăна РФ Патшалăх Думин депутачĕ А.Г. Аксаков ертсе пырать), Мускаври чăвашсен культура обществи (хальлĕхе унăн председателĕн вырăнĕ пушă), Çар офицерĕсен пухăвĕ (ăна Раççей флочĕн Тĕп штаб пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Владислав Алексеевич Ильин вице-адмирал ертсе пырать), Ветерансен пĕрлешĕвĕ тата Чăваш Енрен Мускаври аслă шкулсене вĕренме килнĕ студентсен канашĕ ĕçлеççĕ. Анчах Мускав хула бюджетĕнчен вĕсенчен пĕрне – Мускаври чăваш наци культура автономине – çеç пулăшаççĕ. Вăл, май пулнă таран, – ыттисене тĕрев парать. Бюджет укçи, паллах, пысăк мар, мероприятисем ирттермелли зал е пÿлĕм арендишĕн тÿлеме çеç çитет. Ыттине вара – 2/3-пайне – хăйсен укçа-тенкипе саплаштармалла. Çакăнтах ентешсем йĕркелекен концерт-спектакльсене билетсем сутни те кĕрет. Билет хакĕ пысăк мар, çапах тепĕр мероприяти валли кăштах пухăнать.

Мускаври чăвашсем çулталăкне тăватă паллă уявран сахал мар ирттереççĕ. Вĕсен шутне сурхури, çăварни, акатуй, кĕр сăри кĕреççĕ. Вĕсенче концертсем лартаççĕ, конкурссем ирттереççĕ. Кунти чăвашсен «Туслăх» хорĕ 10 çул та тултарнă ĕнтĕ, вырсарни шкулĕ те тахçантанпах ĕçлет. Шкулта чăваш чĕлхине Альбина Шашина, ташă-юрă Марина Реер хореограф вĕрентеççĕ, Галина Никитина вара тăрăшсах хорпа ĕçлет.

Мускаври ентешсен общество пурнăçĕ йĕркеленсе кайнă паллах. Анчах çакă яланах ун пек пулман. Кирек ăçти пекех кунта та пĕрлешÿсенче пĕр чĕлхе тупайманни, пĕр-пĕрне ăнланманни тĕл пулкаланă. Организацисен хушшинчи лару-тарăва наци культура автономийĕ координацилеме пуçласан хутшăнусем лайăхланнă.

– Эпир нихçан та хамăр умма политика е идеологи шайĕнчи тĕллевсем лартман. Наци культура автономийĕ йĕркелекен кирек хăш мероприятие те чăваш культурине, чĕлхине халаллатпăр. Пурте вĕсенче чăвашла калаçма тăрăшаççĕ – услови çавăн пек лартнă. Пирĕн тĕп тĕллев – эпир, Мускавра пурăнакан чăвашсем, хамăрăн йăла-йĕркене, чĕлхене манса каяс мар тени, халăхăмăрăн историне хисеплесси, вĕсемпе çитĕнекен ăрăва паллаштарасси, – каласа парать Анатолий Иванович. – Çулталăк каялла мана çак организацие ертсе пыма сĕнсен малтанах асăрхаттараттăм: ытти ыйтупа чăрмантарма кирлĕ мар. Мухтав Турра, ку политика ăнăçлă хутшăнусем йĕркелеме пулăшать.

Чăвашсен ентешлĕхĕ Мускавра лайăх енчен палăракансен йышĕнче. Мускав Правительстви енчен ентешлĕхсене регионсен хушшинчи çыхăнусем тĕлĕшпе ĕçлекен комитет «пăхса» тăрать. Ертÿçĕсене пухать, канашлать. Мускаври чăвашсем иккĕмĕш çул ĕнтĕ хăйсен Акатуйне Пĕтĕм Раççейри курав центрĕнче (унчченхи ВДНХ) ирттерет. Апла, чăн та, вырăнти влаçпа лайăх пурăнать. Тĕрĕсех, тĕп хуламăрти чăвашсен ентешлĕхĕ хăйĕн çул-йĕрне шыраса тупнă, ăна çирĕп тытса пырать. Çакă та лайăх: пирĕн йăхташсем канура та, ĕçре те чунне параççĕ. Çавăнпа вĕсене ыттисем те хисеплеççĕ.

Ертÿçĕсемсĕр тата малтан асăннă хастарсемсĕр пуçне чăвашсен пархатарлă йăли-йĕркине Мускавра ăнăçлă тытса пыма кунта пурăнакансенчен Николай Воронцов, Алексей Александров, Владимир Бурмистров, Владимир Ванюшин, Геннадий Михайлов, Владимир Юркин кăмăлтан тăрăшаççĕ. Чăваш Республикин РФ Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представителĕ А.И. Григорьев та ентешсене яланах тараватт, май килнĕ тарăн пулăшсах тăрать.

Валерий СОРОКИН.
*«Хыпар», 6.06.2002, 102№.*

# 2002, авӑн, 25—27: V Аслӑ пуху



Конгреса — парне. 2002, авӑн, 25.

# ÇĚНĚ ĚМĚР ПИРЕ МĚН СУНĚ?

*Мĕн тери çĕкленÿллĕ кăмăл-туйăмпа, мал ĕмĕте шанса, тăван халăхăн çутă пуласлăхне ĕненсе пуçтарăнчĕç чăвашсем 1992 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕсенче хăйсен Аслă пухăвне. Икĕ кун ĕçлерĕ Чăваш наци конгресĕ. Тăван халăхшăн чăннипех пысăк та çутă уяв пулчĕ вăл. Тĕнче тăрăх сапаланнă чăвашсене пĕр-пĕринпе çывăхлатасси, çыхăнтарасси çакăнтан пуçланчĕ. Акă унтанпа вунă çул иртсе кайрĕ. Çак пысăк та, пĕчĕк те мар юбилей кунĕсенче Раççейри, НПППри, тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнче тымар янă йăхташсем ЧНК V Аслă пухăвне хутшăнĕç. Калаçмалли, канашламалли, чуна уçса памалли сахал мар вĕсен. Конгресс утса тухнă çула та тишкерĕç, малашлăх пирки те пуç ватĕç.*

*ЧНК ĕç-хĕлĕ, пуласлăхĕ пирки унăн президенчĕпе Г.Н. Архиповпа тĕл пулса калаçрăмăр. Геннадий Николаевич çине çак яваплă «лава» «тиенĕренпе» пилĕк çул çитрĕ. Сăмах май, вăл Чăваш патшалăх университетĕн чăваш тата истори уйрăмĕсенчен вĕренсе тухнă. 11 çул журналистра – «Хыпар» хаçатăн ятарлă корреспонденчĕнче – ĕçленĕ. ЧР Аслă Канашĕн тата Патшалăх Канашĕн депутачĕ пулнă. Юлашки хутĕнче Культура енĕпе ĕçлекем комитета ертсе пынă.*

**– Геннадий Николаевич, эпир пĕрремĕш хут Конгреса пуçтарăннăранпа вунă çул çитрĕ. Тен, ĕмĕрсен хушшинче, йывăр тапхăрта халăхăмăр пĕрре кăна мар пĕрле пухăнса канаш тунă пулĕ. Çапах та çак кĕске тапхăр пирки ытларах чарăнса тăрăпăр. Мĕн пачĕ вăл пире, чăваш халăхне?**

– Тăван историе лайăх тĕпчеменрен чылай ыйтăва хуравлама çăмăлах мар. Апла пулин те 1917 çулта чăваш халăхĕн пĕрремĕш съезчĕ иртнине пĕлетпĕр.

Юлашки вунă çул пирки мĕн калама пулать-ха? Ман шутпа, çак тапхăр валли палăртнă ĕçсене пурнăçа кĕртнĕ. Патшалăх шайĕнче чĕлхене аталантарассипе йышăннă саккунсем, программăсем ĕçлеççĕ. ЧНК витĕмĕ пулнах ку енĕпе. Халăхăн шухăш-кăмăлĕ улшăнчĕ. Диаспорăпа ĕçлесси йĕркеленсе, çирĕпленсе çитрĕ. Нихăçан курман-илтмен, пĕлмен чăвашсем патне халĕ чăн-чăн тăвансем патне кайнă пекех çÿретпĕр. ЧНК кун-çулĕнчи вунă çул – чăннипех пысăк пулăм. Мĕншĕн тесен тĕнчери чăвашсем несĕлĕмĕрсен çĕрĕ, халăхăмăрăн шăпи пирки вунă çул ĕнтĕ пĕрле, пĕр тĕллевпе канашласа, пĕр-пĕринчен вĕренсе, кулленхи ыйтусене татса парса пурăнатпăр.

**– Çак хушăра палăрмалла улшăнусем пулчĕç терĕмĕр. Чăваш тĕнчинче те, философийĕнче те, ăс-хакăлпа та, шалти туйăмпа та эпир урăхланнă. Çакăн сăлтавĕ – ирĕклĕх сывлăшне ас тивсе пăхнинче, хамăра ытти халăхсемпе пĕр тан туйнинче. Çапах та ЧНК I Аслă пухăвĕ умĕн чĕнсе каланин тĕп шухăшĕ вăйне çухатман пек.**

– Пирĕн паян та çав тĕллевсемех. Чăвашсене тĕнче тăрăх сапаланă пулин те авалхи халăхăн малашлăхĕ пулмаллах, вăл çут тĕнчерен çухалма пултараймасть. Чĕлхемĕре, халăхăмăра вара наци чăмăртăвĕ урлă çеç упраса хăварма пулать.

**– Хамăр шăпамăра тÿрремĕн витĕм кÿме пултаракан, ырана хăвармасăр тумалли ĕçсенчен пĕри вăл – çывхарса килекен çырав. Аслă пухура ку енĕпе калаçу пулатех ĕнтĕ...**

– Чăваш халăхĕн V Аслă пухăвне эпир малтан юпа уйăхĕн 8–9-мĕшĕсенче ирттерме палăртнăччĕ. Çапах та йĕркелÿ комитечĕ пухăва маларах ирттерни вырăнлă терĕ. Тĕнче тăрăх сапаланнă йăхташăмăрсене çырав вăхăтĕнче хамăрăн несĕлĕмĕрсем умĕнчи яваплăх пирки, эпир йăх-тымарсене маннăскерсем маррине аса илтерес тетпĕр. Аслă пухура илнĕ шухăш-кăмăлпа, вăй-хăватпа вырăнсене çитсен халăхпа ĕçлеме каласшăн. Халăх шучĕ хут çинче те çук пулсан, чăвашсем мар тăк, камсем эпир?

**– Çак вунă çула тишкерес пулсан акă мĕн калама пулать: пĕр вăхăт Конгресс ячĕ питĕ çĕкленчĕ пек, унтан каллех путланчĕ. Çакна мĕнлерех ăнлантарнă пулăттăр?**

– Пуринчен чи йывăрри ЧНК пĕрремĕш президенчĕ А.П. Хусанкай çине тиенчĕ. Вăл республикăн Аслă Канашĕн комитет ертÿçи те пулнă май (эпĕ вара çав комитетра унпа юнашар ĕçленĕ) пĕтĕм ăс-хакăлне чăвашлăха çĕклес ĕçе пачĕ. В. Туркай пĕр вăхăт Конгресс ĕçĕпе кăна вăй хурса пăхрĕ. Ятарлă Фонд та турĕç, компьютер илчĕç, «Аталану» хаçата пĕр-икĕ хут кăларчĕç. Анчах та Фонд учредителĕсем Конгресс çыннисем пулманран, хирĕçÿллĕ самант сиксе тухсан пурлăхне те пĕрлех илсе кайрĕç.

Паян Республика Президенчĕ, Правительство пулăшнипе эпир штабхваттерлĕ пултăмăр. ЧНК Шупашкарти чи илемлĕ çуртсенчен пĕринче вырнаçнă. Ăна юсас ĕçе патшалăх та хутшăнчĕ, халăхпа ниме те ирттертĕмĕр. 40 пин çын ытла укçа-тенкĕ пачĕ. Юсав ĕçĕ малалла пырать.

**– Геннадий Николаевич, ЧНК ĕç-хĕлĕ пирки тĕрлĕ калаçакансем пур, кашнийĕ хăйĕн тавра курăм шайĕпе хаклама тăрăшать. Эсир хăвăр мĕн каланă пулăттăр çакăн пирки?**

– Критиклекенсем те, вĕрентекенсем те нумай, анчах пулăшас текенсем çеç сахал. Тăван халăхшăн чунпа тăрăшакансене яланах хапăл Конгресра. Кирек кам та пытăр, сĕнÿсем патăр. Президиумра сÿтсе явма ыйтусем çĕклетĕр. ЧНКра паян пурĕ 14 çын ĕçлет, уйăхсерен шалу укçи илсе тăрать. Анчах та штата тытса тăма пире бюджетран пĕр тенкĕ те уйăрмаççĕ. Пĕтĕмпех хамăр ĕçлесе илетпĕр, çавăнпа та Конгресс çыннисене харам пыр тесе калама çук. Тĕрĕссипе эпир патшалăха та пулăшатпăр-çке: ĕç вырăнĕсем туса паратпăр, налук тÿлетпĕр тата ытти те.

**– ЧНК ертÿçисем тепĕр чухне хăнаран хăнана çеç çÿреççĕ текенсем пур. . .**

– ЧНК ĕçĕ çакăн пек çыхăнусенчен пуçланать: çынпа çын хутшăнса, пĕр-пĕрне шанса калаçнинчен пахи урăх çук. Тĕрĕссипе калас-тăк – юбилейсене кайса саламлама та çын çитмест пирĕн. Чăваш тĕнчи анлă, пысăк, штатра вара, коларăм ĕнтĕ, сахалăн. Тĕрĕссипе кашни регионпа уйрăммăн ĕçлекенсем пулмалла. Ун пек чухне яваплăх та пысăк, ĕçĕмĕр те курăмлă пулĕ.

Кăçал çеç Красноярск крайне кайса килтĕмĕр, унта чăвашсен съезчĕ иртрĕ. ЧНК çине тăнипе инçетри Çĕпĕрте те чăваш наци культура автономийĕ йĕркелеме пултарчĕç. Пермь облаçĕнче пурăнакан йăхташсем патне те ку таранччен Шупашкар чăвашĕсем ура ярса пусман иккен. Эпир кăçал çулла артистсемпе унта çитсен ваттисем савăннипе макăрчĕç. Çапла майпа облаçра чăваш наци культура автономине йĕркелерĕмĕр, пĕрремĕш хут Акатуй иртрĕ.

Халĕ чăваш наци культура автономийĕсем Тутарстанра, Ульяновск, Саратов, Мускав облаçĕсенче тата ытти регионсенче чăмăртанса çитрĕç, ăнăçлă ĕçлеççĕ. Вĕсене пĕрлештерекенни – «Раççейри чăвашсем» наци культура автономийĕ, ăна А.Г. Аксаков депутат ертсе пырать.

**– Сире критиклекенсенчен хăшĕсем эсир влаçпа пĕр чĕлхе тупнишĕн кăмăлсăр пек туйăнать?**

– Чăн та, пĕрисем Конгреса влаçпа вăрçса тăма ыйтаççĕ. Пирĕн вĕсемпе пĕр шухăшлă пулмалла мар, оппозицире тăмалла теççĕ. Хирĕç тăру кăна Конгресс ĕçне лайăх палăртать, çак çул кăна тĕрĕс çул иккен. Эпĕ çакăнпа пачах килĕшместĕп. ЧНК та, Правительство та пĕр ĕçех тăватпăр. Енчен те влаçрисем эпир килĕшме пултарайман ĕçсем тусан çакăн çинчен яланах хамăр шухăша пĕлтернĕ. Тĕслĕхрен, Шупашкар хула администрацийĕ чăвашлăха «хĕстернĕ» самантсем вăхăтĕнче чăваш чĕлхине вĕрентекенсемпе, администраци пуçлăхĕпе тĕл пулнă. Хула ертÿçисем вĕрентÿ ĕçĕнче чăвашла пособисем, кĕнекесем, учебниксем çителĕксĕррине палăртрĕç. Ыйтăва татса парас тĕлĕшпе малалла министерствăсемпе ĕçлеме тиврĕ. Халĕ, ман шутпа, ку енĕпе лару-тăру йĕркеленсе çитрĕ пек.

**– Геннадий Николаевич, ЧНКн юлашки вăхăтри ĕçĕсенчен хăшĕн пирки уйрăммăн чарăнса тăма кăмăл тăватăр?**

– Юлашки пилĕк çул хушшинче ЧНК пурлăх никĕсне çирĕплетессишĕн нумай тăрăшма тиврĕ. Çапах та хамăрăн тĕллевсем çинчен те манса кайман. Çĕр-çĕр тĕл пулу, чăваш ыйтăвĕпе çыхăннă мероприяти пулнă. ЧНК çумĕнче йĕркеленĕ «Янра, юрă» (ертÿçи ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ В. Христофоров) фольклорпа эстрада ушкăнĕ юлашки пилĕк çул хушшинче республика тулашĕнче 440 яхăн концерт кăтартнă, чăвашлăхшăн тăрăшакан çынсене суйлавсенче пулăшнă.

Хамăн вице-президентсен ячĕпе те тав сăмахĕ каламалла. Шалу илсе тăмасан та питĕ нумай вăй хума тивет вĕсен. Сăмахран, В. Тимофеев вице-президент ертсе пыракан спорт пĕрлешĕвĕ çитĕнекен ăрăва тухăç халăхĕсен кĕрешÿ ăсталăхĕпе паллаштарать.

А. Леонтьев вара ЧНК ĕçне «Хыпар» хаçатра çутатма майсем туса

парать, диаспора валли «Чăваш тĕнчи» кăларăм йĕркелесе ячĕ. О. Викторов студентсемпе пулăшать, тĕрлĕ регионсенче Чăваш патшалăх университечĕн филиалне йĕркелеме май килчĕ. Самар тăрăхĕнче те, Пушкăртстанра та çак ыйтусене татса панăпа пĕрех.

В. Иванов (вăл пĕрремĕш вице-президент) эпĕ çитеймен вырăнсенче пулать, вăл е ку ĕçе хутшăнать, А. Капитоновăн экономика ыйтăвĕсемпе ытларах ĕçлеме тивет.

ЧНК Фончĕн ертÿçи К. Портнов пуçарнипе тата ыттисем ырласа йышăннипе «Кĕмĕл сасă» эстрада фестивалĕ виççĕмĕш хут иртрĕ. Унта хутшăнакансен йышĕ те, географийĕ те çулленех пысăкланса, анлăланса пырать.

**– Диаспорăна илес пулсан унти хăш чăваш хастарĕ пирки тав сăмахĕ калană пулăттăр?**

– Питĕ йышлă вĕсем. Кашни регионтах пур. Çапах та Самар тăрăхĕ чи малтан аса килет. Ку таранччен вĕсем палăрсах кайман пекчĕ. Халĕ чăвашлăх ĕçне облаç администрацийĕ шайĕпе аталантараççĕ.

Чĕмпĕрсем чăваш шкулĕсемпе лайăх ĕçленине палăртмалла. Тюменьре ĕçлĕ чăвашсем пĕр чĕлхе тупса чăмăртанма пултарни савăнтарать.

Эстонири, Латвири, Литвари, Беларуçри, Казахстанри чăвашсем хăйсен сассине пама пуçларĕç. Турцире, Германире, Америкăра, Финляндире, Венгрире пурăнакан чăвашсем те ЧНКпа çыхăну йĕркелеме тытăнчĕç.

**– V Аслă пуху патне таврăнар-ха. Делегатсемпе хăнасем йышлă пулĕç-и унта? Тата тĕп калаçусем мĕнлерех ыйтусем тавра иртĕç?**

– Раççейрен, Эстониреи, Молдоварăн, Германирен, Америкăран пĕтĕмпе пине яхăн çын пуçтарăнĕ тетпĕр. Тĕп калаçу «Чăваш нацине XXI ĕмĕрте мĕн кĕтĕ?» ыйту тавра иртĕ. Юлашки çырав тăрăх Раççейре 2 миллиона яхăн чăваш пурăнать. Чи малтанах çак йышлă халăхăн тăван чĕлхине упраса хăвармалла, тĕнче тăрăх сапаланнă йăхташăмăрсене пĕтĕçтермелле, диаспора çыхăнăвĕсене малалла аталантармалла. 1992 çулта чăмăртаннă Чăваш наци конгресĕ малалла та çак тĕллевсене ăнăçлă тытса пырĕ.
Çапла пултăр!

Надежда СМИРНОВА калаçнă.

## ВИÇÇĔМĔШ ÇАВРĂМ УМĔНЧЕ

**(В. Станьял кун кĕнекинчен)**

**Пĕрремĕш çаврăм.** Чăваш халăх хуралĕн (Конгресăн) никĕсĕ çирĕп пулчĕ. Ăна мĕн чухлĕ хаяррăн тапăнсан та ку таранччен çавăрса çапаймарĕç. Мĕншĕн тесен тĕллевĕсем ырă, халăхăн анлă сийĕсене тивĕçтерÿллĕ. ЧНКна çĕр-шыври влаç тытăмĕ таптани е хăйĕн ертÿлĕхĕнче шалти тăрлавсăр пăтрану пуçланса кайни кăна пĕтерме пултараççĕ. Шухăшĕ – халăха пайăрланса чăмăртанма чĕнни – пĕрех юлать.

Хăрушши – шалта ухмахла тĕркĕшÿ пурри. Конгресс ĕçтăвкомĕнче е вырăнти пĕрлĕхсенче (Самарта, Чĕмпĕрте, Мускавра) тавлашусем пулкаласа пычĕç. Ытларах чухне – ĕç пирки. Кирлĕ тавлашусем. Съезд умĕн пуçлăх пулас текенсем тапаçланса илеççĕ. Вăл та вырăнлă. Çапла пулмалла та.

Иккĕмĕш сьездра Атнер Хусанкай вырăнне Валери Туркай вице-президент ларасшăнччĕ. Вăл съезда тăрăшса, нумай вăй хурса «туртса» кăларчĕ. Уншăн ăна халĕ те чĕререн тав тăватăп. Анчах Аслă пуху президента ылмаштармарĕ. Йăнăшрĕ-ши халăх? Çук. Лаври лашана тăвайккине хăпарса çитмесĕр тăварса пăрахмарĕ.

Виççĕмĕш Пухăвăн хатĕрленÿ лавне Ультияр Цыпленков (секретариат ертÿçи) тапса туртрĕ. Пухăва Шупашкарта чарсан урăх çĕрте ирттерме вăрттăн çул-йĕр шыраса хутăмăр. Тавах тăван чăвашсене. ЧНК секретариачĕн чĕнĕвне илтсенех вĕсем хăнасене хăйсем патне яма вуншаррăн та вуншаррăн чĕне пуçларĕç. Сыватăшра сипленекен Вячеслав Тихонов генерал вырăн çинчен тăрса тухса никамран малтан 300 тенкĕ илсе пычĕ...

Çак Пухура А.П. Хусанкай элтепер, ыйтăва юлташĕсемпе пĕрле тĕплĕ сÿтсе явса, ЧНК чĕлпĕрне Геннадий Архипова пама сĕнчĕ.

**Иккĕмĕш çаврăм.** Çапла вара, 1997 çулта Конгресс пурнăçĕнче иккĕмĕш «пилĕк çуллăх» пуçланчĕ. ЧНК Мăн Канашĕ çĕнĕ президент умне «Чăваш халăх çуртне» хута яма тĕллев лартрĕ. Конгреса çĕнĕ кил çавăрма Белоруссирен куçса килнĕ Владислав Никитин пайтаçă хăюллăн та çирĕппĕн пулăшрĕ. Геннадий Архипов унпа тĕл лекни Конгресс çул юппинче Уша Юпи тупнă пекех пулчĕ. Ытларах çаврăнса тухинччĕç пирĕн ума çавăн пек сăваплă самантсем!

«Чăваш халăх çурчĕ» пулса çитрĕ темелле. Малтан ĕмĕтленнĕ пекех тирпейленеймерĕ вăл. Унта вице-президентсемпе Мăн Канаш валли, ытти хĕсметшĕн вырăн тупăнмарĕ. Çапах та – аван!

Шел, çурт тавра вăрах тапăртатса тăтăмăр. Халăхпа ниме ирттерни, «Çăлкуç» кафе тата ытти пайталăхсем уçни те ĕç-пуçа хăвăрт вĕçлемелĕх пулаймарĕ. Часах хаçат-журнал тиркесе çыра пуçларĕ. Николай Тувалкин (Адĕр) пайтаçă, Илле Иванов журналист статйисене Президиумпа Мăн Канаш ларăвĕсенче тĕплĕ сÿтсе яврăмăр. Лайăх-и, начар-и, ниме лавĕсем килсех тăчĕç, çурт-йĕр юсавĕ малаллах пычĕ. ЧНК президенчĕ хăйсене шанса панă ĕçе тÿрре кăларма сахал мар вăй хучĕ. Çакăншăн ăна мухтатăп.

**Чăвашлăх шухăшĕ тавра.** Чăваш идейи çинчен И.Я. Яковлев ячĕллĕ общество тума пуçланăранпа калаçатпăр. 1905, 1917 çулсенчех Юмансем, Алюновсем, Никольскисем шухăшланă ун çинчен. Паян та тĕп шухăшăмăра палăртаймастпăр. Малтанхи тапхăра «Пайăрланса чăмăртанар!» чĕнÿпе ирттертĕмĕр. Чăнах та, юрă-ташă, тĕрĕ-эреш урлă хамăр ятсене аса илтĕмĕр, пайăрăн-пайăрăн ушкăнланса (центрсем, ентешлĕхсем, ансамбльсем, обществăсем, автономисем туса) Конгресс тавра пухăнтăмăр. Самаях пайăрлантăмăр. Пĕрех те ЧНК мĕнне пинпин чăваш çаплах илтмен-ха. Мĕн тумаллине тата мĕнле ĕçлемеллине пĕлетпĕр пулсан та – Чăваш наци конгресĕн пĕтĕм Чăваш тĕнчинчи ăс-тăнпа меслетлĕх витĕмне Шупашкарти Тĕп ĕçтăвком тĕллевĕсен шайне антарса лартрăмăр. Çакăншăн ЧНК Президиумĕпе Мăн Канаш тÿрремĕнех яваплă. Мана йăваш пулнăшăн пĕçерккĕ памалла.

XXI ĕмĕре яш-кĕрĕм шăпи çинчен тĕплĕ шухăшланă программăпа кĕрес тенĕччĕ. Пулмарĕ. 5-мĕш съездра, халăх йышне çырса шутланипе хытă çыхăнтарса, ачамăрсен кил-йышпа ял-йышри тăван чĕлхи çинчен тепре чан çапмаллах. Интернетпа электрон çыхăнăвĕ кĕрлесе тăнă саманара чăмăртанма йывăр мар. Анчах кампа чăмăртанмалла? Ачамăрсемпе мăнукăмăрсем чĕлхесĕр чăвашсем пулса тăчĕç вĕт! Нацишĕн ку чĕрĕ вилĕмпе танах!

«Мĕриканизм», «глобализаци» тата наци культурипе национализм çинчен Пĕрремĕш Микула патша вăхăтĕнчи западниксемпе славянофилсем пекех тавлашма юрать. Пĕрех те паянах кирли – хамăр ачасене манкуртлăхран хăтарса хăварасси.

Чăваш пулма йывăр. Вырăс пулма та, тутар пулма та йывăр.

Мĕншĕн ытти халăхсенчен ÿксе юлмалла? «Чăваш, ятна ан çĕрт!» Çакă чăваш идейи мар-и вара?

**Пĕрле е уйрăм лайăхрах?** Чăваш наци конгресĕн 1992 çулхи I Аслă пухăвне ирттерме Чăваш Республикин Аслă Канашĕ хытă тимленĕччĕ. Вăл пуху чăннипех асра юлмалла хитре сăнлă та пуян ăслă пулчĕ.

Ытти пухусенче ун пек пулăшу тупăнмарĕ. V Пухăва йĕркелес ĕçри йывăрлăха ЧР Президенчĕн Администрацийĕпе ЧР Правительстви çурмалла пайларĕç. Çапла пулмалла кирек хăçан та. Тăван республика пĕтĕм чăваш çыннишĕн юратнă кил пулни влаçпа халăх килĕшÿллĕ чухне лайăхрах сисĕнсе юлать.

Аслă влаçпа хура халăх хушшинче туслăх пулаймасть тесе вĕрентнĕ пире. ЧНКна халĕ те ятлакан нумай: вăл республика влаçĕн кĕсьери органĕ пулса юлать имĕш. Паллах, ун пек хăрушлăх пур: кам çăкăрне çиетĕн – ун куçĕнчен пăхатăн. Кам куçĕнчен пăхса пурăнмалла Чăваш конгресĕн? Пурин куçĕнчен те. Халăхпа ертÿлĕх куçĕнчен. Урăхла каласан – чăвашсем пурăнакан вырăнсенчи пуçлăхсене йăлтах пĕлсе тăмалла, чăваш ыйтăвне тан виçепе сÿтсе явмалла. Чăваш Республики, паллах,

метрополи (тĕп вырăн) пулсах юлать, тĕп йывăрлăх ун çинех тиенет. Ытти вырăнсен те хăйсен нушине хăйсен вăйĕпе татса пама вĕренмеллех. Вăл вăхăт çитет. Мăн Канашăн Самарта, Чĕмпĕрте, Слакпуçра ирттернĕ ларăвĕсем çавна кăтартса пачĕç. Тен, малашне Аслă пухусене черетпе Ĕпхӳре, Хусанта, Самарта, Чĕмпĕрте е Кемĕрте ирттермелĕх те ӳссе çитĕпĕр. Паллах, Раççейĕн наци политики йĕркеллĕ аталанса пырсан тата чăваш халăхне регионсенчи влаç ыттисемпе тан картма тытăнсан. Тата ЧНК йĕркеллĕ ӳссе, демократиллĕ те ушкăнлă йыша чăмăртансан.

Иккĕленекенсене шанчăкăмăр ан хăраттăр. Çутта туртăнайман йывăç аяла юлать, асапланса хăрса пĕтет. Чăваш конгресĕн пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк та çутă туртăмлă. Вăл пушмак айне пулмасăрах туслă та кирлĕ пулма вĕренсе пырĕ. Пĕрле килĕштерсе пурăннинчен пахи çук! Виличчен пĕрле пулар.

## САМАНАНА ХИРĔÇ ТĂНИ КИРЛЕХ

### I. Шăппăн-шăппăн лармашкăн эпир шăпчăк чĕппи мар

Çавăнпа та хамăр шухăша халăха уççăн пĕлтерсех тăнă – чăвашлăх пур енчен те асап курать, тимĕр сăнчăртан та кашкăртан хăтăлчĕ пулсан, тӳрех упана лекрĕ, унăн пуласлăхĕ çутă мар, анне чĕлхин чухăнлăх йăранĕ сарăлсах пырать, паянхи глобализм ĕнерхинчен тумĕпе кăна уйрăлса тăнине пула пирĕн йăла-йĕркене варалать, çĕрĕмĕр-шывăмăр çинче çичĕ ют хуçаланать (авалхи чăвашсен халапĕ тăрăх – аякран килнĕ хăнасене вĕсем ура тĕпĕнчи тусанне шăлса хăвармасăр кăларса яман), çут çанталăк вырăнне укçана пуç çаптарни халăха чуралăха кăларса тăван килтен хăвалать.

Эпир шыраса тупнă тĕрĕслĕх мар ку: тухăçран анăçа çитиччен, кăнтăртан пуçласа çурçĕр таранах вĕреннĕ çынсем иртнĕ ĕмĕрсенче те, паянхи саманара та иккĕленмесĕр вăхăтпа тавлашнă, наци чанне çапсах тăнă, прогресс регресс патне илсе çитнине курнă. Цивилизаципе юрăхсăр пĕлӳ сăтăр кӳни хĕрлисемпе те, шуррисемпе те çыхăнман: ырăпа усал пĕр-пĕрне чăтма пултарайманни паллă, ĕçченпе кахал е çуран çӳрекенпе лашаллă (машинăллă) çын çывăх тус пулайманнине те ваттисем сиснĕ. Анчах та çак антагонизм тĕнчинче пире шуйттансем Турă ячĕпе витĕнме пултарни ăса-тăна пăтрататать: таса та йăваш чăваш каланине ĕненме хăнăхнă та – чее ултавçăсене итлесе шар курать, ĕнер Турра тиркенĕ çынсемех ыранах сăх сăхнишĕн савăнать, кукаçейĕ кашкăр яланах вăрманалла пăхни çинчен асăрхаттарнине темшĕн манса каять.

Шăп та лăп асăннă йывăрлăхпа çăмăллăх хушшинчи кĕрешӳ çивĕчленсе çитнĕ çулсенче Чăваш наци конгресĕ çуралать те «Пĕтĕм тĕнчери чăвашсем, пĕрлешĕр!» йыхрава халăх патне çитерет, чăвашлăха упрама шикленмесĕр чĕнет, йăх ятне яракансене хăюллăн питлет, республика суверенитетне пурнăçлама хуçасене хистет, пĕтĕм тĕнчери чăвашсем суйланă делегатсене Шупашкар хулинче Аслă пухăва пуçтарать.

Юлашки çулсенче ЧНК ĕçтешĕсем çитмен кĕтес Чăваш тĕнчинче юлмарĕ те пулĕ. Тахçанах вăраннă Уралпа Хусан чăвашĕсем, тăван Атăлçи тăрăхĕнче вырнаçнă Самарпа Чĕмпĕр ĕлĕкхи тĕп хуламăрсем таврашĕнчи тăвансем, Мускавпа Белоруссири патриотсем, Петербургпа Балтикăри туссем патĕнче пулса курни Конгреса хавхалантарчĕ. Берлин хулинчи хурăнташсемпе пухăнса пĕр сĕтел хушшинче калаçса ларни те пирĕншĕн усăллă пулчĕ.

Уйрăмах Çеçпĕл çулĕпе Шупашкартан Теччĕне çитиччен йĕлтĕрпе чупнă эрне асра юлчĕ. 30 ытла йĕлтĕрçĕрен тăракан ушкăн сахалтан та 25 ялта апатланма е çĕр каçма чарăннах, кĕтсе илекен халăха клубра е шкулта поэт çинчен каласа панă, ЧНК тĕллевĕсем пирки те асăннă, 300 çухрăм тăршшĕ çулпа Чăваш Ялавĕ айĕнче пынă вăхăтра ушкăнри йĕлтĕрçĕсене кăвар чĕреллĕ чăвашпа паллаштарнă, унăн сассине парсах тăнă. Çеçпĕлĕн программа-максимумĕ ЧНК тĕллевĕн никĕсĕ пулса тăчĕ – анлă та ирĕклĕ Чăваш патшалăхĕ пирĕн пуçран тухмалла мар, чăваш халăхĕн укçи-тенкипе тăван чĕлхепе культурăна аталантарни пултăр, чăвашлăха сыхлакан вăй-хăватсăр май çук, тăван йăла-йĕрке управçисем яланах хисепре тăмалла. Чăвашлăх хуралĕнче тăракан кашни чăваш кунсерен Çеçпĕлĕн «Пирĕн вăй» манифестне вуламалла – тухăçран та анăçран килнĕ ютăн «мăшкăлне нумайранпа чăтатпăр, хура-шур нумай куртăмăр... Чăвашсем, вăхăт çитет ĕнтĕ чĕлпĕрсене хамăр алла илме... Кутсăр-пуçсăр саманара пирĕн чăвашсен тӳришари тусан питĕ аван пулĕччĕ... Вырăс кăларнă йĕркепе мар, хамăра килĕшекен йĕркепе пурăнасчĕ... Пирĕн чăвашăн куланай укçине вырăс аллине ăсатас марччĕ...» Телейлĕ халăх эпир, чăвашсем, пирĕн Çеçпĕл çул пуç пур, унăн вĕрентĕвĕ – пирĕн çăлăнăç çулĕ. Поэт шăппăн ларман, аслати пек кĕрленĕ, кĕрлет, кĕрлетĕр.

### II. Тăванпа тăван калаçнă чух çичĕ ютăн мĕн ĕç пур?

Çак сăмахсене пирĕн несĕлсем çеç калама пултарнă, пире тухăçран килнисенчен те, анăçран çитнисенчен те уявсенче, пухусенче, ларусенче пăрăнма хушнă. Чăваш хамăрăн йăла-йĕркене пула упранса юлнă, ялĕсем ешернĕ, чĕлхи пуйса пынă, хĕрĕсем арча тулли тĕрĕпе илемлетнĕ тум хатĕрленĕ, чăвашсем çăкăр пĕçерме те, сăра тума та, тырă-пулă ӳстерме те, пылне-çуне хатĕрлеме те, тăлăп çĕлеме те, çăмата йăвалама та, çурт-йĕр пуралама та ăста пулнă, кĕскен каласан – суверенлă пулнă, çын пурлăхне ăмсанман. Аннесем катан пир тĕртнине аса илсен... – эпир паян ниме тăман чăвашсем çеç. Вĕсем ют çын пĕçернĕ апата çисе-тăранса пурăнма пултарайман. Чăваш нихăçан та çын çăкăрне çимен, çурта лартса çурт туман, хăйĕн ĕçченлĕхĕпе те пуянлăхĕпе вырăс жандармери полковникĕ Маслов евĕр юта тĕлĕнтернĕ. Хуçалăхра та, культурăра та чăваш хăйĕн чысне упранă, ятне вараламан. Пирĕн ялăн урам варринче пухăннă сала кайăксем евĕр хăйсен хушшине юта явăçтарман, вăл темле вăйлă пулнă пулин те ăна ушкăнпа хăваласа янă. Пĕлĕтри хур кайăксем карталанса кăнтăра кайнă чух нихăçан та хайсен ретне çăхана чĕнмен, ун хыççăн вĕçсен тĕрĕс çула çухатма пулнине пĕлнĕ. Шыв е сывлăш карапĕсем тума çынна кайăк вĕрентнине асра тытмалла та – пурнăçра та вĕсен тĕслĕхĕпе усă курмалла. Ку шухăшсене ЧНК Президиумĕнче е Мăн Канаш ларăвĕнче, Аслă пуху кунĕсенче е ятлă-сумлă чăвашсене Конгресс ячĕпе саламланă вăхăтра никамран та эпир пытарман.

Чăваш çумне такам та çыпăçни паллă – вĕреннĕ, ăслă, йăваш куçлă чăваш каччисене ют халăх хĕрĕсем вăрласа кайнинчен пуçласа чăваш артисчĕсен концерчĕсене эсрелсем хăйсен номерĕсене укçапа е сценăпа астарса кĕртсе яни патне çитиччен. Тухса тăраççĕ вара пăхакансен умне леш тĕнчене ăсатма васкакансем хуп-хура кĕпе-йĕмпе, тапратаççĕ курнăçланма та çăмăлттайланма, намăс сăмахсем пакăлтатма та сӳпĕлтетме, сăлтавсăр шăл йĕрме, мекĕрленсе те хĕремесленсе юрлама, тытса пăрахнă пек чĕтреме, кут-пуç çинчен лĕпĕртетме. Шĕкĕр Турра, ЧНК çумĕнчи «Янра, юрă» ушкăн ертӳçи В. Христофоров пур, вăл халăх умне шап-шурă таса тумпа тухнине куратăн та чуна уçатăн, вăл авалхи чăвашсен юррисенчен йĕрĕнменни хавхалантарать, хут купăсĕ унăн аллинче илемлĕн вылять. Тепĕр ăста юрăçа А. Васильева та çĕрĕпе итлесе ларма пулать. Анчах та нумайăшĕ вара эсрелсем еннелле сулăнать, вăйпах залра алă çуптараççĕ. «Хам сăввине те, кĕввине те çырнă, юрлаканĕ те хамах» тесе мухтанаççĕ, эппин, хăйсене халăхран ăслă теççĕ пулас. «Ĕлĕкхи патне каялла çул çук» сăмахсем ертӳçĕсен çăварĕнчен тухнине вăхăтра асăрханă курăнать вĕсем.

Халăхран ăсли те, ăсти те çук çакă çутă тĕнчере. Çавăнпа эпир халăх юррисене итлесе те юрласа пурăнма хăнăхнă, историе хирĕç нихăçан та çапăçман, хаçат-журналта 30 ытла статья çырса кăларса халăха вулама сĕннĕ, «Чăваш çĕр-шывĕ ăслă, халăхĕ ăслă» тема яланах пирĕншĕн пĕрремĕш вырăнта тăнă. «Халăх депутачĕ», «халăх хуçалăхĕ», «халăха вĕрентес ĕç» сăмах çаврăнăшĕсенчен «халăх» компонента кăларса пăрахни те самана халăха хисеплеменнине пĕлтерет (демос халăх пулнине шута илсен вара псевдодемократи вăхăчĕ çитнине курма пулать). Тепĕр тесен – «канаш–совет» вырăнне административлă меслете юратакан самана кашни кĕтесре «администраци» туса хуни те тарăн шухăша ярать. Çырса хунă сăмаха пуртăпа касса ваклаймăн, унăн сакки сарлака пулсан та, тен, ĕмĕрĕ кĕске пулĕ. Тăван халăхран сивĕннисем телейлĕ пулнине курман-ха.

### III. Ҫӗнӗрен йӗрке кăлармастпăр, авалхи йăлана пăрахмастпăр

Ӗмӗр-ӗмӗр ҫапла тупа тунă чăваш яш-кӗрӗмӗ ваттисен умне чӗркуҫленсе ларса. Енчен те йăлана пăрахма лексен вара пирӗн «Арҫурипе» «Нарспие» те пăрахмалла пулать, кукамипе кукаҫи пенсийӗн пайӗ те пире лекмӗ, Бичурин—Яковлев—Ашмарин—Никольский—Хусанкай ячӗсем те манăҫа тухӗҫ, чăваш тӗррисем те пирӗн куҫран ҫухалӗҫ, атте-аннесен вăйӗпе тунă ҫуртсенчен урама хăваласа кăларса ярӗҫ, чăваш кашкăрӗ ертсе килнӗ Атăлҫи тăрăхӗнчи чи илемлӗ ҫӗр-шыври вырăнтан тухса кайма тивӗ... Ҫук, ытла та хăрушă — аваллăха тиркени. Ваттисене кунӗн-ҫӗрӗн тав туса асăнăр, вӗсен йăлипех пурăнар. Ӗне вырăнне йытă ҫаватса ҫӳрер мар (пирӗн ялта йытă хăвалакана ухмах тенӗ), кутамккаран тăрăхласа ҫурăм хыҫне чӗрне сăрламалли хатӗрсемпе тултарнă енчӗк ҫакса ҫӳрес марччӗ, хамăр ҫӗре те чӗлхене хӗстернине терроризм е агресси вырăнне хурса сивлесчӗ, пирӗн машинăсем «чув» вырăнне ют сас паллисем ҫырса чăваша 21-мӗш номерлӗ вырăс тунишӗн те савăнар мар, тӗнче картти ҫинче «Шупашкар» ҫуккишӗн кулянар, ҫав вăхăтрах «Канаш» пурришӗн хӗпӗртер.

ЧНК Уставӗ те, Тӗнчери халăхсен хартийӗ те пире ирӗклӗ пулма йыхравлаççӗ, анчах та чăваш ирӗклӗхӗ (суверенитет) бинокль витӗр пăхсан та курăнмасть, хула урамӗнче вăл нимӗн чухлӗ те сисӗнмест. Конгрессменсем чăвашлăх шăпи пирки хула мэрӗсене те, республика ертӳҫисене те сахал мар сӗнӳ панă, анчах та вӗсем пире тимлӗн итленӗ пек тăваççӗ те титул наци хутне кӗме васкамаççӗ. Ятлă-сумлă чăвашсем ҫинчен хула урамӗсем сайра-хутра ҫеҫ каласа параççӗ. Ҫакăнта палăрать те эпир ваттисене манса кайни. Е республикăри ял ячӗсенчен тăрăхланине илер – Ишаки, Ахпердино, Мочеи, Олух... Кам кăна ҫырман-ши кун пирки? Ҫук, администратор хăлхи хупланнă курăнать. Ваттисем вӗт урăхла ятсем парса хисепленӗ ялсене – Ишек, Ахпӳрт, Мучикасси, Улăх Шӗмшеш, Трак, Шăмат, Нурăс, Каҫал... Тепӗр хут аса илтерме лекет: Ҫӗр чăмăрӗ ҫинче кашни халăхăн килӗ пур, хăйӗн килӗнче вăл хăй хуҫаланать, хăйӗн чӗлхипе те йăли-йӗркипе пурăнать. Хальлӗхе чиркӳсемпе мечӗтсем купалама хăнăхса ҫитрӗмӗр, анчах темӗн пирки чăваш йăли-йӗркипе паллаштаракан Керем лартма укҫа тупаймастпăр.

### IV. Аттене атте тееççӗ, аттене илме укҫа ҫук, укҫи пулсан-пулмасан та аттене сутаканӗ ҫук

Маттур пирӗн халăх, укҫапа кăна ырлăх тӗнчине кӗме ӗмӗтленмен. Атте-аннене сутма та, туянма та, бартерпа улăштарма та май ҫуккине пӗлнӗ. Укҫа шуйттан ӗҫне тунине те курнă, К. Ивановăн «Укҫапала эрехех ҫынна ăсран кăларать» вӗрентӗвӗпе килӗшнӗ. Л. Толстой та хăйсене чăваш вырăнне хунă кăна мар, пирӗн йăланах тытса пынă: «Суту-илӳҫӗсене хăваласа ямасан илемлӗх керемӗ пӗтет». М. Лютер вара чăн чăвашах пулнă пулӗ: «Турра килӗшекен ӗҫ пӗрре кăна — ҫӗр ҫинче вăй хуни». Катаччи ярăнсах е кнопкăна пуссах пуянлăх пухма юраманнине вӗсем туйнă, паянхи саманан хăрушлăхӗ пирки асăрхаттарнă. Кам анăҫра, калăпăр, Германире, пулса курнă, вăл Раççейре демократин, рынок экономикин шăрши те ҫуккине аван пӗлет — пӗр танлăхпа ирӗклӗх пурнăҫра ҫук пулсан, асăннă категорисем ҫинчен калаҫма ҫылăх. Япалана никам та хакпа виҫмест — ăна пахалăхне тата калăпăшне кура хак параççӗ. Хака укҫапа хăпартни ӳсӗмпе пӗрре те ҫыхăнман, ку тӗрӗслӗхе ача-пăча та пӗлмелле.

Юрӗ, ҫитӗ хуҫасене ятласа, саманапа ҫапăҫса, таврăнар халăх патне, академик калашле, «тăвалла пулсан та малалла» утар аптраман таврашӗсемпе пӗрле, ҫӳлте асăннă юрăмăра асра тытса, Чăваш наци конгресӗ тавра пӗрлешсе — халăха халăх теeççӗ, халăха илме укҫа ҫук (пултăр), укҫи пулсан-пулмасан та халăха сутаканӗ ҫук (пултăр). Сутăнчăк пулар мар! Ҫапла пултăр!

Владимир ИВАНОВ, ЧНК вице-президенчӗ.

## МӖН ВĂЛ — НАЦИ ИДЕЙИ?

*ЧНК Аслă пухăвӗ умӗн пирӗн корреспондент Чăваш наци конгресӗн вице-президенчӗпе, «Хыпар» Издательство ҫурчӗн генеральнăй директорӗпе–тӗп редакторӗпе Алексей ЛЕОНТЬЕВПА курса калаҫрӗ.*

**– Алексей Петрович, Чăваш наци конгресӗ умӗн хăш-пӗр тус-тăвансем наци идейи ҫинчен сăмах пуҫарчӗҫ. Тавлашу вăл тавлашу та, пӗрех, еплерех ăнкаратăр-ха, мӗнлерех хаклатăр-ха Эсир асăннă ăнлава?**

– Питӗ кăсăк ыйту. Аслă пуху умӗн иртнӗ канашлу-ларусенче эпир сахал мар калаҫрăмăр асăннă ыйтупа. «Идея» тени вăл, чи малтан, халăхăн ăнкарулăхӗн-шухăшлавӗн шайне пӗлтерет. Пирӗн ЧНК хастарӗсем, пӗлетӗп, Аслă пухура ҫивӗч калаҫу пуҫарасшăн. Ан тив, ҫакă кирлӗ япала — халăх ăнлавӗ пирки калаҫни-тавлашни яланах пархатарлă. Ӗмӗрсенчи ӗҫ-пулăмпа танлаштарсан, мӗн тери вăйлă аталантăмăр! 20-мӗш ӗмӗрти тапхăр ҫеҫ мар — 16—17-мӗш ӗмӗрсенех тӗслӗхе илме пулать, — мӗн тери вăй-халлă пулса тăчӗ чăваш халăхӗ! Ку чăнлăха, ку фактсене никам та историрен кăларса пăрахма мехел ҫитереймест.

Тепӗр ыйту: республикăмăр патшалăх шайӗнчех пулмарӗ пулин те (эпир халӗ хамăра «Федераци субъекчӗ» тетпӗр), Иван Яковлев хыççăн пирӗн ҫырулăх, литература епле аталанни куҫ кӗрет. Маларах, тен, ҫӳллӗ ҫак шай пулнă та-тăр. Анчах, пусмăрне кура, ăна «ӗне ҫисе янă» текен ăнлав та ҫуралса юлнă халăхра. Анчах 19-мӗш ӗмӗр вӗҫӗнче — 20-мӗш ӗмӗр пуҫламăшӗнче, Иван Яковлевич вӗрентӗвӗпе халалӗсене шута илсе, чăвашсем кӗнеке те кăларма пуҫланă.

Курăмлă тепӗр тӗслӗх: Н.В. Никольский тӗпчевҫӗ-энциклопедист пуҫарнипе чăваш халăх хаҫачӗ — «Хыпар» — тухма тытăнчӗ. Иоаким Максимов-Кошкинский тăрăшнипе Чăваш театре ҫунатланчӗ. Тен, вăхăт иртнӗҫемӗн, пире вӗсем (литература, театр т.ыт.те) пахалăхӗпе пур чухне те тивӗҫтермеççӗ ахăр. Тен, тивӗҫтермен те пулӗ... Анчах фактран ҫӳллӗрех пулаймăн. Эпир Петӗр Хусанкайпа Ухсай Яккăвне, Митта Ваҫлейне, хальхи саманари Геннадий Айхие, Николай Петровский-Теветкеле, хевтеллӗ ăсчаха Геннадий Волков академика та манăҫтарма пултараймастпăр. Ҫавăн пекех Михаил Романович Федотовпа хисеплӗ ытти вӗрентекенсене сума сумасан епле-ха?

Ҫавăнпа та «чăваш идейи», «наци идейи» тенӗ чух эпӗ чи малтан вӗсене аса илетӗп. Вӗсем хыççăнхисем те (ҫыравҫăсем, журналистсем, ăсчахсем) ырă тӗллеве малалла аталантараççӗ. Чăваш ӗҫне тăваççӗ вӗсем, чăваш идейине хевте кӳреççӗ.

**– «Чăваш идейи» тесе «шăрпăклă» ыйтусем хускатаççӗ хăш чухне пирӗн ӗҫтешсем...**

– Чылайăшӗ ҫак ăнлава ҫӗклет те — ăна тӗплӗн уҫса параймасть. Чăнах та, мӗн вăл — чăваш идейи? Ман курăмпа, вăл — диалектикăлла аталанса пыракан шухăшлав. Вăл пурнăҫа кӗрсе пырать пулсассăн, темӗнле чăрмавсем, чараксем кансӗрлесен те (вӗсене эпир ҫӗнтерсе пыратпăр), ума пачах урăх сăнар, урăх ӳкерчӗк тухса тăрать.

Ас тăвăр-ха: халӗ «перестройка» тата тем те пӗр тетпӗр, ҫавах эпир ку тапхăрччен те (Наци конгресӗ йӗркелениччен) мӗн тери кӗрешеттӗмӗр халăх ҫӗкленӗвӗшӗн — 10 ҫул каяллах. Чӗлхе саккунӗшӗн, культура аталанăвӗшӗн, президент тытăмӗшӗн пайтах «ҫапăҫнă» эпир. Эппин, наци идейишӗн (вăл вăхăтри курăмпа) ӗҫлерӗмӗр. Палăртнине пурнăҫласа президентлă республика пулса тăтăмăр. Тепӗр хут калам: наци идейине, хастар, ăслă-тăнлă ҫынсен тӗллевне никӗсе хывса. Николай Федоров политикине кам ырлать, кам хурлать, анчах ҫав вăхăтрах Чăваш Ен тӗнче шайӗнче мӗн тери хисеп, ят-сум илнине никам та хирӗҫлеме пултараймасть.

**– Калăпăр, республика уявӗсем – Чăваш Енӗн «ҫуралнă» кунӗ тата ытти те – ҫакă курăмлăн сăнарланать пек...**

– Паллах, паллах! Ҫакна Чăваш Республикипе Раççей центрӗ хушшинчи ҫыхăнусем аталанни те, Шупашкарăмăр хитреленсе-илемленсе пыни те, ытти пулăмсем те курăмлăн ҫирӗплетеççӗ. Уйра е улăхра пӗртен пӗр чечек ҫеҫ (утмăл турат тейӗпӗр) ӳсме пултараймасть, унтах — салтак тӳми е урăх ӳсен-тăран. Ҫавăн пекех — политика пурнăҫӗ, вăл ҫивӗччӗн кăларса тăратакан пулăмсем те...

Чăваш нацийӗн идейи ҫинчен те ҫавнах калама пулать. Атьăр-ха аса илер: тахҫан Шупашкарта чăвашла вӗрентекен пӗр шкул (6-мӗш шкул) пулнă. Хальхи лару-тăру пачах урăхла — пӗтӗм шкулта чăваш

чӗлхине вӗрентеҫҫӗ. Педагогӗсен ӑсталӑхӗ пирки калаҫмӑпӑр – унта ҫитменлӗхсем сахал мар. Ҫапах та вӗсен ытларах пайӗ чунне парса ӗҫлет. Акӑ вӑл – пархатар тени...

**– Хаҫат-журнал пирки те манар мар, Алексей Петрович...**

– Килӗшмелле! Пирӗн информаци уйӗ еплерех анлӑ сарӑлнине «Хыпар» Издательство ҫурчӗ кӑларса тӑракан хаҫатсем те ҫирӗплетме пултараҫҫӗ. 1966 мӗш ҫулта «Ҫамрӑк коммунист» хаҫата хупнӑ влаҫра тӑракансем. «Хыпар» пуҫарӑвӗпе 1996 ҫултанпа «Ҫамрӑксен хаҫатне» кӑларатпӑр. 17 пин тираж. Хаҫат-и ҫакӑ? Паллах, хаҫат! Ку тӗслӗх те наци идейипе килӗшӳллӗ пулнине, асӑннӑ идея пурнӑҫа кӗрсе пынине ӗнентермест-и вара? Ун пекки ҫинчен малтан, ҫав хаҫат усӑличчен, наци идейине парӑннисем ӗмӗтленнӗ кӑна-ҫке. «Пулмалла!» – тетчӗҫ вӗсем. Халӗ, ав, тытӑр-ха, вулӑр: Никольский тахҫан ӗмӗтленнӗ пекех – «Чӑваш хӗрарӑмӗ», «Сывлӑх», ытти хаҫатсем вулакансем патне ҫитрӗҫ. «Ар», «Ачапча» хаҫатсем те пирӗн аталану чакманнине, эпир малаллах ӑнтӑлнине яр-уççӑн ҫирӗплетсе параҫҫӗ. Акӑ ӑҫта иккен наци идейи!..

**– Урӑхла шухӑшлакансем те пур-тӑр Конгресс хастарӗсен йышӗнче?**

– Мӗншӗн ҫук пултӑр... Тавлашура чӑнлӑх ҫуралать тесе ахаль каламан-тӑр. Ҫапах темле тупӑшсан-тавлашсан та манӑн позицие улӑштарма никам та пултараймӗ. Мӗншӗн тесен ку тӗслӗх, ку факт – куҫ умӗнчех, ӑна ниепле те урӑхла, тӳнтерле ҫаврӑнса хума ҫук. Паллах, кашнин хӑйӗн курӑмӗ, ӑнкарӑвӗ... Аса илсен... 10 ҫул каялла, Чӑваш Ене никама пӑхӑнман республика туса хурас тенӗ чухне, эпир пурте романтиксем пулнӑ. Эпӗ те ҫавах. Анчах пурнӑҫ, патшалӑх аталанӑвӗ, хальхи чӑнлӑхсем урӑхла пӗтӗмлетӳ ҫуратаҫҫӗ. Эпир халӗ федераци патшалӑхӗнче пурӑнатпӑр. Тен, ҫак пӗрлӗх пулсах та ҫитеймен-тӗр. Асӑннӑ федерацие ҫирӗплетме нумай ӗҫлемелле-ха. Тен, каярах ку лару-тӑру лайӑхланӗ – эпир чӑн-чӑн федераци тытӑмӗнчех пурӑнма пуҫлӑпӑр. Унччен вара центрпа регионсен хутшӑнӑвӗсемпе яваплӑ курӑмне наци идеологийӗпе килӗшӳллӗн ҫирӗплетмелле...

Мӗн кирлӗ-ха паян халӑха? Чи малтан, упранса юласси – чӑваш пулса, тутар пулса, якут, чечен пулса... наци идейи, тепӗр хут калатӑп, вӑл никама пӑхӑнман республика туса хуни ҫеҫ мар. Эteme (халӑха тейӗпӗр) чи кирли – хӑтлӑ кил-ҫурт тата ӗҫ-пулӑм. Тата мӗн кирлӗ ҫынна? Ӑшӑ кил тата тус-тӑванлӑх. Хирӗҫӳ, вӑрҫӑ-харҫӑ ан пултӑр. Чӑвашӑн вара унӑн культури, сӑвви, юрри, ташши пулчӑр, кӗнекесем, хаҫатсем тухчӑр. Кӑлтӑк-сӑлтӑк ҫук тесшӗн мар эпӗ. Пур, пулӗҫ те. Анчах, пӗтӗмлетсе каласан, халӑхӑн тӗп ӗмӗчӗ никама пӑхӑнман патшалӑх туса хурасси мар-ҫке. Эппин, хамӑра упрамалла. Совет империйӗнче те, унччен те вун-вун халӑх пӗтнӗ, Ҫемен Элкер калanӑ пек – «ирӗлсе» кайнӑ. Конгресс пухӑвӗ умӗн ҫеҫ-ха эпӗ Н.В. Никольскин пӗр кӗнекине вуларӑм. 1917 ҫулта 1 миллион та 300 пин чӑваш пулнӑ иккен (халӗ эпир 2 миллион пулнипе мухтанатпӑр). Ҫӗрпӳ уесӗнче вара тутар-чӑваш текен 20 пин ҫынлӑ халӑх пурӑннӑ имӗш. Камсем вӗсем, ӑҫта сухалнӑ? Хальхи лару-тӑрӑва палӑртакан ҫав тери яваплӑ тапхӑр ҫывхарчӗ, – кӗҫех Раҫҫей халӑх ҫыравӗ пуҫланать. Эпир чӑннипех пуррине, наци мӑнаҫлӑхне, шухӑшлавӗпе курӑмне, наци идейине яр усҫӑн, курӑмлӑн палӑртакан тапхӑр. Эппин, чӑвашлӑха сутар мар.

Вырӑса тухма пуҫланӑ чӑваш та хӑйӗн йӑхне-ӑрулӑхне сумлатӑр. «Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр» тени хут ҫинче ҫеҫ ан юлтӑр...

Ҫапла пултӑр!

Георгий ИРХИ калаҫнӑ.

## ЧӐВАШ ТӖНЧИН ПУЛАСЛĂХĚ – ҪАМРĂКСЕНЧЕ

Чӑваш тӗнчин пуласлӑхӗ чӑн малтанах ҫамрӑксемпе, ӳссе пыракан ӑрупа ҫыхӑннӑ тесе шухӑшлатӑп. Пурте куратпӑр-асӑрхатпӑр: чӑн таса чӑваш чӗлхишӗн, литературишӗн, наци культуришӗн, йӑли-йӗркишӗн, вӗсем нимӗнле йывӑрлӑха пӑхмасӑр аталанса пычӑр тесе ҫунакан шур сухалсем, шел те, сахаллансах пыраҫҫӗ. Е, ҫакна та пурте асӑрхатпӑр, пурте тенӗ пекех аслӑ ӑру шутне кӗреҫҫӗ. Вӗсене пулӑшакан, сумлӑ та пархатарлӑ ӗҫе хӑйсем ҫине илекенсем вара (пытарма кирлӗ мар ҫакна) ҫукрах. Ҫавӑнпа ӑрусен ҫыхӑнӑвне йӗркелесе-майлаштарса пырасси пирӗн тӗп ӗҫсенчен пӗри шутланать.

Ку тӗлӗшпе тӗнчипе паллӑ ӑсчах, экономист, таса чун-чӗреллӗ чӑваш арӗ Л.П. Кураков ертсе пыракан Чӑваш патшалӑх университечӗн тӳпи чӑннипех те пысӑк. ЧПУ тытӑмӗнчи чӑваш филологийӗпе культура факультетне университет ертӳҫисем яланах тимлӗ сӑнаҫҫӗ, пулӑшаҫҫӗ, вӑл наци кадрӗсем хатӗрлекен тӗп «ҫӑл куҫ» пулнине асра тытаҫҫӗ. Ҫавӑнпах кунта ҫӗр чӑмӑрӗн тӗрлӗ кӗтесӗнче тымар янӑ чӑваш ҫыннисен ывӑл-хӗрне аслӑ пӗлӳ парас, сутта тухма пулӑшас, вӗсенчен хӑй халӑхне малалла илсе кайма пултаракан специалистсем хатӗрлес тесе тӑрӑшаҫҫӗ. Тулай чӑвашӗсене ЧПУна вӗренме кӗме ҫӑмӑллӑхсем те параҫҫӗ. Тӗслӗхрен, акӑ, паян кун пирӗн патӑмӑрта Пушкӑрт, Тутар республикисенчен, Самар, Чӗмпӗр, Оренбург облаҫӗсенчен, Хакасирен ырӑ тӗллевпе аякри ҫула тухса килнӗ чӑваш ывӑл-хӗрӗ пӗлӳ илет. Шанас килет: вӗсем каярах, вӗренсе пӗтерсен, хӑйсем ҫуралнӑ вырӑнне таврӑнса чӑваш-ентешӗсене малалла вӑй илме пулӑшӗҫ.

Паян кун ҫамрӑксен (студентсем те) укҫа-тенкӗ тума та вӗренсе пыраҫҫӗ, стипенди килессе е ашшӗ-амӑшӗ укҫа парасса кӑна кӗтсе лармаҫҫӗ. Вӗсем (пурте мар та, чылайӑшӗ!) алӑ усса ларманни, яваплӑха туйни аван пулӑм. Чылайӑшӗ паян ашшӗ-амӑшӗн чӗлхине хисеплени, тӑван чӗлхепе калаҫма вӑтанманни те савӑнтарать. Ҫавна май тӗп хуламӑрти троллейбуссенче кӑна мар, район центрӗсенчи автобуссенче те чарӑну ячӗсене чӑвашла-вырӑсла пӗлтерессине, тӗрлӗ учреждени-организаци ячӗсене чӗлхесем ҫинчен калакан саккунпа килӗшӳллӗн ҫырассине (хальлӗхе ҫакӑ туллин, кирлӗ пек пурнӑҫланса пымасть-ха!) йӗркелемеллех...

Пӗлетӗп: манӑн чӑваш-йӑхташӑмсем Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхӗ вӑхӑтӗнче те вӑйлӑ та хӑватлӑ пулнӑ. Халӗ те, акӑ, чӑваш ывӑл-хӗрӗ илемлӗ, ӗҫчен, хастар. Уява пуҫтарӑннӑ ентешӗмсене пурне те мӑнаҫ юман пек ҫирӗп те вӑрӑм кун-ҫул сунатӑп. Пӗрле пурӑнар! Пӗрле ӗҫлер! Пӗрле савӑнар!

Ҫапла пултӑр!

Олег ВИКТОРОВ,
ЧНК вице-президенчӗ.

## ТĂВАНЛĂХ, ЧĂВАШЛĂХ СĔТКЕНĔПЕ

*Вячеслав Александрович Тимофеев – ЧНК вице-президенчӗ. Ҫамрӑксемпе, спорт енӗпе ӗҫлес, тулаш ҫыхӑнусем йӗркелес тата ытти ыйтусемшӗн яваплӑ. Мӗн туса ҫитернӗ, хӑшӗ пурнӑҫланаймасӑр юлнӑ? Малашлӑх валли мӗнле тӗллевсем? Ҫаксем пирки пирӗн корреспондента Вячеслав Александрович акӑ мӗн каласа кӑтартрӗ:*

– Иртнӗ съезд хыҫҫӑн хам валли палӑртнӑ ӗҫсене пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртнӗ. Вӗсене тума ҫӑмӑлах мар пулсан та аптӑраса ӳкмерӗмӗр. Тӗп тӗллевпе – Раҫҫейри, НППП ри, тӗнчери чӑвашсене пӗрлештерсе тӑрассипе, культура, спорт ҫыхӑнӑвӗсене йӗркелесе пырассипе – май ҫитнӗ тарӑн ӗҫленӗ. Юлашки тӑватӑ ҫул хушшинче ЧНК ертӳҫисем пулса курман регион юлман та пулӗ. Ҫапах та вулакана шута илме: ҫак ӗҫе ЧНК вице-президенчӗсем общество майӗпе пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Ҫамрӑксене ӑс-тӑн, культура, эстетика тӗлӗшӗнчен тӗрӗс-тӗкел ҫитӗнтерессипурин те (патшалӑхӑн та, общество организацийӗсен те, ҫав шутра ЧНКн та) пысӑк тивӗҫӗ. Республикӑри каратэ федерацине ертсе пынӑ май кашни района тухса ҫӳретӗп, ачасене спортӑн ҫак енӗпе ҫывӑхланма пулӑшатӑп. Ҫак кунсенче ҫеҫ 12–13 ҫултисемпе Федерацин Атӑлҫи округӗнчи ӑмӑртӑвне (вӑл Тольятти хулинче иртрӗ) кайса килтӗмӗр. Спортпа туслашнӑ ача аллине нихӑҫан та пирус, эрех черкки, наркотик тытмӗ. Ҫавӑнпа та наци сывӑ, ӑслӑ-тӑнлӑ упранса юласси эпир ҫитӗнекен ӑрӑва спорта мӗнлерех явӑҫтарнинчен те нумай килет.

**– Эсир районсенче час-часах пулатпӑр терӗр. Район ертӳҫисем ҫак шухӑшсене мӗнлерех йышӑнаҫҫӗ? Спорт чӑннипех наци ҫӑлӑнӑҫӗ пулнине ӑнланса сире пулӑшма хатӗр-и?**

– Иртнӗ эрнере ҫеҫ Вӑрнар, Йӗпреҫ районӗсенче пулма тӳр килчӗ. Район администраци пуҫлӑхӗсемпе тӗл пулса калаҫнӑ, вӗсем пирӗн шухӑша ырласа йышӑнаҫҫӗ. Шупашкарта ҫак ӗҫе туса пыма, паллах,

çămăлрах. Специалистсем те, ятарлă вырăнсем те пур темелле. Хăш-пĕр районта, çав шутра Вăрнарпа Йĕпреçре те, юлашки вăхăтра лару-тăру чăннипех йĕркеленсе кайрĕ. Патшалăх та, общество организацийĕсем те çине тăрса ĕçлеме пуçларĕç, çакăн витĕмĕ пурах ĕнтĕ.

**– Йывăрлăхсем вара ытларах мĕнпе çыхăннă?**

– Укçа-тенкĕ ыйтăвĕпе. Экономикăри лару-тăру çăмăллансанах ырă улшăнусем пулĕç.

**– ЧНК çумĕнче чăваш кĕрешĕвĕ енĕпе хастар ĕçлекенсем пур…**

– Питĕ ырлатăп. Çак спорт – пирĕн несĕлĕмĕрсен авалхи пуянлăхĕ. Ăна çĕнĕрен чĕртсе янă. Чăваш кĕрешĕвĕнче те культура, эстетика, ӳт-пĕве çирĕплетекен мелсем пур. Чăваш Енре пурăнатпăр-и е инçетре-и – пире çак спорт пĕтĕçтерет. Съездра Пĕтĕм чăвашсен олимпиадине çĕнĕрен чĕртесси пирки ыйту хускатас тетĕп. Ăна ячĕшĕн мар, çӳллĕ шайра йĕркелемелле. Пирĕн наци кунĕ пур. Çав уяв культура программипе çеç мар, спорт мероприятийĕсемпе те тулли пултăр.

**– Мĕн чăрмантарать?**

– Енчен те съездра палăртса хăварсан пурнăçа кĕртесси пирки иккĕленӳ пĕрре те çук. Ыйтăва хамăрăн патшалăх, Раççей Спорт министерстви шайĕпе татса пама пулатех.

Унсăр пуçне Атăлçи тăрăхĕнчи спорт уявĕ, çавăн пек ытти мероприятисем йĕркеленин усси пысăк. Унта пирĕн тăрăхра пурăнакансем çеç мар, Раççейри тĕрлĕ командăсем хутшăнсан сумĕ тата пысăкрах пулĕччĕ.

**– Хăвăра илес пулсан – ЧНК ĕçĕнче тата мĕн туса çитермен пек?**

– Пире критиклекенсем те йышлă. Вĕсем эпир политикăна хутшăнманнипе кăмăлсăр. Çакăнта тĕрĕсси пур-и? Татса калаймастăп. Эпир халь республикăра та, диаспорăра та ытларах экономика, культура, спорт çыхăнăвĕсене аталантарас, çирĕплетес ĕçе туса пытăмăр. Тен, çакăн пĕлтерĕшĕ пысăк политикăран та анлăрах.

**– Чăваш халăхĕн черетлĕ Аслă пухăвĕнче тата мĕн пирки сăмах тапратас килет?**

– Ачасем, çитĕнекен ăру пиркиех шухăшлатăп. Еврейсене, нимĕççене е ытти халăха илер-и – вĕсем хăйсен пуласлăхĕ пирки пуç ватаççех. Диаспорăра пурăнакансем валли тĕрлĕ кану лагерĕсем йĕркелеççĕ. Вĕсенче ачасене хăйсен тăван чĕлхипе, авалтан килекен йăли-йĕркипе çывăхланма пулăшакан условисем туса параççĕ.

Пирĕн те çапла ĕçлеме майсем шырамалпах. Ытти облаççемпе республикăсенчен килекен йăхташăмăрсен ачисенче тăванлăх, чăвашлăх туйăмне чĕртме пулатех. Чăваш Енре вĕсене кăтартмалли питĕ нумай. Истори, культура енĕпе çеç мар, спорт тĕлĕшпе те кăсăклантармалли пайтах. Чăвашлăх сĕткенĕпе пиçĕхсе ӳсекен ăру çеç пирĕн шанăçа тӳрре кăларĕ.

Çапла пултăр!

Н. ГЕОРГИЕВА калаçнă.

## ХАЛĂХ ШĂПИ ПИРКИ ТЕМИÇЕ ШУХĂШ

Тăван халăх шăпи шухăшлаттарать, канăçсăрлантарать мана. Чăвашсем хăйсен тăван чĕлхине упраса, аталантарса пыччăр тесен ЧНКн тата çаврăнăçуллăрах, пуçаруллăрах пулмалла.

Мĕн çитмест-ши пире – чăвашсене? Ман шутпа, юрату, пĕрне-пĕри хисеплени, сума суни. Кĕвĕçӳ туйăмĕ чылай чăрмантарать. Пултаруллисене ура хума, таптама тăрăшатпăр мар-и?

Ыранхи пурнăç – çамрăксенче. Вĕсемпе ытларах ĕçлемелле. Çамрăк ăру авалхи историе пĕлмест. Чăн историе вĕрентмелли технологи те çук.

ZЧНКпа патшалăх хутшăнăвĕсем пирки мĕн шутлатăп-ха? ЧНК шайне çĕклемелле, ун йышне пултаруллă, аслă, пысăк талантлă çынсене явăçтармалла. Наци идейи пулмалла. Пирĕн хушăра ăнлану, пĕрлĕх пулмасан уссине кураймăпăр. Халăхра тĕрĕс каланă: «Пĕр çын сурать – типсе пырать, çĕр çын сурать – кӳлĕ пулать».

ЧНК хавшаклăхне экономикăна çирĕплетнипе чакармалла. Çавна май ЧНК Фондне аталантармалла. Малашлăхра чăваш предпринимателĕсен (республикăри тата диаспорăри) бизнес ассоциацине йĕркелес тĕллев пур.

Президентпа, патшалăхăн ытти органĕсемпе, республикăри пур халăхпа та килĕштерсе, пĕр чĕлхе тупса пурăнмалла.

Чăваш ялĕсене, ман шутпа, ĕçкĕ-çикĕ пĕтерет. Çак çивĕч ыйту та таçта витĕнсе, пытанса ан юлтăр. ЧНКн тулашра ĕçлекен пин-пин чăваша хăйĕн хӳттине илмелле.

Кирек мĕнле пулсан та – халăхăн кун-çулĕ лайăхланасса, унăн малашнехи шăпи телейлĕ пуласса шанса, ĕненсе тăратăп.

Çапла пултăр!

Александр КАПИТОНОВ, ЧНК вице-президенчĕ.

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСНЕ КИЛНĔ ТĂВАНĂМĂРСЕНЕ!

Сире пĕтĕм чун-чĕререн ырлăх-сывлăх суннине йышăнсамăрччĕ! Çак Аслă пухăва йĕркеллĕ ирттерсе ямалла пултăрччĕ! Хамăр пĕрлĕхшĕн ĕмĕрех хĕрӳллĕн тăрăшар!

*Çĕрĕм-шывăм, сана юратса,*
*Тăванах халăха ыр сунса,*
*Ĕмĕрех туслăхра пурăнар,*
*Хĕрӳ ĕç лаççинче туптанар.*
*Ĕмĕрех Çеçпĕл пек тăрăшар,*
*Çеçпĕл пек хисеплер, юратар*
*Тăван халăх чипер чĕлхине.*
*Тăван халăх сăвви-юррине,*
*Тăван халăх çĕр пин тĕррине.*
*Тӳпере çут хĕвел ялкăшни,*
*Çĕр-шывсем туслăхра пурăнни*
*Çав çĕклет, ăшăтать чунăма,*
*Çав хистет пурнăçа юратма.*
*Шанăçа çухатмастпăр эпир,*
*Çĕр çинче ĕмĕрех пултăр мир!*

Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ, Чăваш халăх поэчĕ.

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСНЕ

*Мĕн пур чăвашсене пĕрлештерсе*
*Тăратăн эсĕ малтанхи кунран,*
*Вĕсен нуши те савнăçне пĕлсе*
*Çĕр тăрăх çирĕп утăмпа утан.*
*Паллах, чăвашсене ертсе пыма*
*Хĕнрех пулсан та, эсĕ вăй хуран.*
*Пухатăн ăс чун тĕрекне пама,*
*Кашни çынна чăн тус пекех куран.*
*Çĕр чăмăрĕ çинче чăваш нумай,*
*Пĕрин пирки те каяр мар манса.*
*Вĕсен чĕри патне çул хывнă май*
*Ĕçсем те пирĕн пултăрччĕç таса.*
*Чăвашсене илетĕн хӳтлĕхе,*
*Чĕртетĕн чĕлхене, йăласене,*
*Усала мар, чăн-чăн илемлĕхе*
*Илме чĕнетĕн аслă çул çине.*
*Конгресс енне пăхать пĕтĕм чăваш.*
*Эс сис, тимле, тĕнче ун ĕç-пуçне.*
*Яр уçăлĕ вара пире малаш,*
*Çул хывăпăр йышпа тĕнче умне.*

Георгий ЕФИМОВ, Чăваш халăх поэчĕ.

## ПУÇТАРĂНМА, ТĂВАН, ВĂХĂТ ÇИТРĔ

(Чăваш конгресне йыхравлани)

*Ăçта эсир, чăваш ачи-пăчи?*
*Сассăр пур-и таçти çĕрсенче?*
*Элле сире ютсен качи-мăчи*
*Сивĕтрĕ-ши тăван ăшшинчен?*
*Чарлан вĕçет аслă Атăл çийĕн*
*Килен-каян çынна ыр сунса,*
*Ăçта вĕссе, чарлан, ăçта çитĕн,*
*Ăçти тăван кĕтет тусăнса?*
*Хыпарна пар, тăван чăваш ачи,*
*Тапранса тух инçет çĕрсенчен.*
*Элле сана ютсен пулли-вăлчи*
*Сивĕтрĕ-им аннӳ килĕнчен?*
*Килсе курма тапран, чăваш ачи,*
*Чунтан кĕтсе пирĕн ăш вăркать.*
*Чарса тăмасть сана тĕнче шалчи –*
*Тăван çĕр-шыв килме йыхăрать!*

Виталий СТАНЬЯЛ

## ЧАННЕ ÇАПАТПĂР-ХА, АНЧАХ ТĔРĔСЕХ-ШИ?

*Шухăшăмпа, ĕмĕтĕмпе эпĕ пĕр хут çеç мар пăлхар-сăвар тăхăмĕсем патне çитсе килнĕ. Ытла та маттур, харсăр, пултаруллă пулнă-çке вĕсем. Çут çанталăкпа килĕшӳре пурăннăран ирĕклĕ туйнă-ши хăйсене? Вĕсен шухăшĕпе, тĕнче курăмĕпе пур этем те тĕнчене чăваш пулса килет, пур халăх та вĕсем пекех таса, ирĕклĕ чунлă.*

Шел те, хура пĕлĕтсем хупăрласа илсен, унăн паттăр арĕсене тĕп тунă хыççăн манăн халăхăм чылай ĕмĕр «йăвашшисен» ретĕнче тăчĕ. Хырăм тутă пулсан, ача-пăчи выççăпа макăрмасан чăваш, хăй шучĕпе, начар мар пурăнатăп тенĕ. Кӳршипе хирĕçмест, Турă умĕнче çылăха кĕмест. Ăна урăх нимĕн те кирлĕ мар-мĕн. Çапла чылай вăхăт шыв «сыпса», ытти халăхсенчен шикленсе те хăраса кун кунларĕ вăл. Чун пирки шухăшлама, калаçма-и унта? Ӳтне упраса хăварни те темпе танлашнă пулĕ. Çак мăшкăла чăтса ирттерме тӳсĕмлĕх çитерни те чăн-чăн паттăрлăх.

Пусмăрта пурăнас теменнисем, ирĕклĕ чунлисем хăйсен тăван çĕрĕ-шывĕпе сыв пуллашса тĕнче тăрăх саланнă, пĕр-пĕр «упа шăтăкне» çитсе тухса çĕнĕ йăва çавăрнă, йăха малалла тăснă. Çавна май ăçта кăна тымар яман пуль икĕ миллионлă чăваш халăхĕ. Паянхи куна хăйĕн тăван çĕр-шывĕнче çак йышăн çурри çеç пурăнать. Ытти вун-вун халăхпа хутшăнса кун кунлакан йăхташ юнĕпе çеç чăваш пулса юлмарĕ-ши? Мĕн пĕрлештерет, çыхăнтарать пире? Мĕнлерех вăл XXI ĕмĕрти чăваш? Çак тата ытти нумай ыйту пирки Чăваш наци конгресĕн паян уçалакан V Аслă пухăвĕнче калаçасса шанса тăратăп.

Республика тулашĕнчи чăвашлăх чĕрĕлĕвĕ фольклор ушкăнĕсем чăмăртаннинчен, уявсенче пĕрле пуçтарăнса тăван чĕлхепе шăкăлтаттарса калаçнинчен пуçланнăран – Конгресăн маларахри съезчĕсенче ытларах çаксем пирки сăмахлама тивнĕччĕ. Юбилей çулне тивнĕ Аслă пухура вара хамăрăн тĕллевĕмĕрсене çав шайран чылай çӳлерех çĕклеттерес килет. Чăвашлăх, наци идейи тетпĕр. Мĕн-ши вăл? Вырăсран е ытти нацирен тухнă ертӳçĕсене чăвашла калаçма вĕрентмелле тени е фольклор ушкăнĕ валли чăваш тумĕ çĕлеттерессипе çыхăннă чăрмавсем-и? Вăл та, ку та кĕрет пулĕ унта. Çапах та анлăрах, паянхи пурнăç тарăнăшĕпе, виçипе хаклаттарас килет наци идейи текен ăнлава. Акă мĕнлерех курăнать вăл маншăн.

Чи малтанах паянхи чăваша акă мĕн хумхантармалла: Çĕр-аннемĕр çинче хамăра сыхласа хăварасси. Çакна çывхарса килекен çырав пĕтĕмлетет. 1989 çулта иртнĕ çырав эпир Раççейре титул халăхсен хушшинче хамăрăн йышăмăрпа виççĕмĕш вырăнта пулнине çирĕплетнĕччĕ. Çĕнни мĕн кăтартĕ: ӳснĕ-и е чакнă-и? Йыша çухатас мар тесен тăван халăхăн Аслă пухăвĕнче чылай тĕплĕ калаçмалла. Диаспорăран килнĕ йăхташăмăрсене вырăна таврăнсан ку ыйтупа мĕнлерех ĕçлемеллине ăнлантармалла. Тăван çĕр-шывĕнчен аякра ӳссе çитĕнекен çамрăк ăру чăвашла калаçма, вулама пĕлмест пулĕ. Çапах та вăл юнĕпе чăвашах-çке. Вырăс та, еврей та, ытти наци çынни те мар. Акă ăçта тата хăçан кирлĕ пулчĕ пире несĕлĕмĕрсен, пăлхар-сăвар тăхăмĕсен мăнаçлăхĕ, хăюлăхĕ.

Вăл е ку наци хăçан йĕркеллĕ аталанма пултарать? Вăл сывă, ăслă-тăнлă пулсан çеç. Апла эпир ку енĕпе мухтанма пултаратпăр-и? Ытлашшипех мар. Чăваш ялĕ ĕçкĕ-çикĕпе çывăхланни вăрттăнлăх мар ĕнтĕ. Арçынсем çеç мар, хĕрарăмсем те, вĕсемле пĕрле çамрăксен те хаяр шĕвекпе туслашаççĕ. Акă мĕн пирки чан çапмалла Пухура. Çак «авăртан» çăлăнса тухмалли çул-йĕр шырамалла. Тĕрĕссипе, çук мар вĕсем. ЧНК та ку енĕпе хастарлăх кăтартать. Чăваш кĕрешĕвне çĕнĕрен чĕртсе янине питĕ ырламалла. Урă, сывă пуçпа çеç пурнăç тасан курăнĕ.

Çавна май пĕтĕмĕшле культура пирки те манса каяс марччĕ. Пултарулăх, фольклор ушкăнĕсем кашни ялтах йĕркеленсе çитрĕç-тĕр. Çак шайпа лăпланса ларас марччĕ. Хамăртан мĕн лайăххи пурри-не сыхласа тĕнче культурипе, ăслăлăхĕпе çывăхланасчĕ, тавра курăма ӳстересчĕ, пуянлатасчĕ. Ку енĕпе те Чăваш Енре «пионерсем» çук мар. Тĕслĕх шыраса мĕншĕн таçта аякка каяс. Акă «Хыпар» Издательство çурчĕн опытнех илер. Паянхи чăвашăн ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерес тесе мар-и тĕрлĕ кăларăм – «Сывлăх», «Кил-çурт, хушма хуçалăх» тата ыт. те – кăларать. Чăваш аталанăвĕн тĕслĕхĕ тесшĕн çакна.

Вĕрентӳ пирки те калаçу пулатех съездра. Паянхи вĕрентӳ шайĕ пире тивĕçтерет-и? Шел те, учебниксем, пособисем çитменни çеç мар, ялсенчи шкулсем пушанса юлни те шухăшлаттарать. Ахальтен-и республика Президенчĕ «Çĕнĕ шкул» программăпа ĕçлеме ыйтать. Унпа килĕшӳллĕн районсенче никĕс (база) шкулсем пулмалла, вĕсене ăста кадрсемпе, паянхи кун ыйтăвне тивĕçтерекен хатĕрсемпе вăйлатмалла.

Чăваш тĕнче курăмĕ, психологийĕ, этики тавра та пĕрле канашламалла. «Чăваш комплексĕ» (хамăра ыттисенчен кая хуни, тивĕçлĕ хаклама, кăтартма пĕлменни) питĕ вăйлă такăнтарать пире. Хăравçă, хăйсене хисеплемен çыннăн пепки те ашшĕ-амăшĕ пекех шанăçа çухатнăскер пулса çитĕнет. «Чăваш» тенĕ сăмах хăех вĕсене хăратать тейĕн. Çакнашкаллисем шăпах çĕнĕ çыравпа меллĕ усă курассăн туйăнать. Çыраври «эсир хăш наци çынни?» тенĕ ыйтура «россиянин» тейĕ те хурĕ.

Çакăнтах виçерен тухса чăваш ятне варалакансене те палăртса хăвармалла пулĕ. Ку енĕпе паянхи эстрада «çăлтăрĕсем» маттур. Анăç хыççăн кайса теме те вĕренеççĕ вĕсем. Тепĕр чухне чăваш тĕнче курăмĕпе шайлашакан «картаран» та тухса кайса аташаççĕ.

Çак тата ытти вун-вун ыйту тавра чан çаптарас килет паян уçăлакан Аслă пухура.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 26.09.2002, 180–181№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН 10 ÇУЛТИ ĔÇ-ХĔЛНЕ МĔНЛЕ ХАКЛАТĂР?

**Петр КРАСНОВ, вице-премьер, Чăваш Республикин социаллă политика министрĕ:**

– Вунă çул хушшинче, паллах, нумай улшăну пулчĕ. Чи малтанах Атнер Петрович Хусанкай лайăх, тĕплĕ ĕçленине палăртса хăварас килет.

Самана улшăнать, вăхăчĕ те улшăнать. Çавна май ĕç формисем те, меслечĕсем те кăштах улшăнмалла. Юлашки çулсенче ЧНК пуçлăхĕсем, ытларах Геннадий Николаевич Архипов, экономика çыхăнăвĕсене йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлерĕç. Куна ытти регионсенче те туса пычĕç. Çакă, ман шутпа, питĕ тĕрĕс. Мĕншĕн тесен экономика йĕркеллĕ пулсан культура, пĕлӳ валли укçа нумайрах уйăрма пулать.

Тепӗр шухӑшӑма та калассӑм килет. Ӗлӗксенче ытти регионсенчи тусӑмӑрсем (пурте мар паллах) ҫакӑнпа пулӑшӑр-ха, кунпа пулӑшӑрха тесе ыйтатчӗҫ. Халӗ апла мар. Экономика никӗсне хывма, тӗрлӗ предприятипе патшалӑх ҫыхӑнӑвӗсене йӗркелеме хӑйсемех тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем, инҫетре пурӑнакан ентешӗмӗрсем, чӑваш экономикине те нумай пулӑшма пултараҫҫӗ.

Ӗҫлемелле, хастартарах ӗҫлемелле, хальхи саманан хӑйсене евӗрлӗхне шута илмелле.

**Станислав УПАҪҪИ, филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ:**

– Чӑваш наци конгресӗ нумай ӗҫ тунӑ. Енчен те малтанхи тапхӑрта политика ыйтӑвӗсем тавра, – ун чухне вӑл кирлех пулнӑ, – ытларах пуҫ ватнӑ пулсан, юлашки вӑхӑтра экономика ҫине пусӑм тӑваҫҫӗ. Аякра пурӑнакан пултаруллӑ чӑвашсене шыраса тупса ҫыхӑнусем йӗркелеҫҫӗ. Чӑваш Ене чӗнсе килсе кунти усламҫӑсемпе тӗл пултараҫҫӗ, пӗрле ӗҫлемелли килӗшӳсем тӑваҫҫӗ. Малашне Сутуилӳ палати, Бизнес центрӗ урлӑ та хӑватсене ӳстермелле.

Ман шутпа, Чӑваш наци конгресӗ хальхи вӑхӑтра та политика ыйтӑвӗсе-не хутшӑнмасӑр тӑма пултараймасть. Паллах, паян урӑхларах ҫул-йӗр тытмалла. Республика министерствисемпе питӗ тачӑ ӗҫлемелле. Вӗсемпе пӗрле шкул учебникӗсене хатӗрленӗ ҫӗре те, литература енӗпе те хутшӑнмалла. Халӗ, рынок тапхӑрӗнче, «Нарспи» поэмӑри Тӑхтаман, Михетер сӑнарӗсем те урӑхларах курӑнаҫҫӗ. Анатолий Емельянов писателӗн произведенийӗсенче председатель сӑнарӗсем нумай. Вӗсем, тӗрӗссипе, хальхи вӑхӑтӑн хатӗр сӑнарӗсем. Анчах та ун чухне, совет саманин хӗсӗкӗнче, ирӗксӗрех урӑхларах ӗҫлеме, шухӑшлама тивнӗ. Тарӑннӑн тишкерсен вӗсенче рынок сӑнарӗ сисӗнсех, курӑнсах тӑрать. Ҫакӑн пек хайлавсене программӑна кӗрттермелле. Ачасенче тӑрӑшулӑх, аптраманлӑх паллисене ҫуратма тӑрӑшмалла.

Культура – «культ» сӑмахран, вӑл йӗрке тенине пӗлтерет. Культурӑна халӗччен професси театрӗ, ансамбль шайӗнче кӑна хакланӑ. Анчах та пирӗн яланхи, кулленхи культура пирки ытларах шухӑшламалла. Ҫакна Н.В. Федоров Президент тахҫанах пусӑмласа калать. Калӑпӑр, ҫурт-йӗре тӗрӗс йӗркелесси, асфальт ҫулсене килсем патне илсе ҫитересси, сывӑ пурнӑҫ йӗркине тытса пырасси т.ыт.те.

Президент чӑваш мӑнаҫлӑхне Раҫҫей, тӗнче шайӗнче ҫӗклеме тӑрӑшнине кашниех туйса илтӗмӗр ӗнтӗ. Унӑн потенциалӗпе тата сулӑмлӑрах усӑ курмалла. Пӗлетпӗр вӗт-ха: Федоров урлӑ чӑваш халӑхне хаклаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та унӑн ятне ямалла мар. Кунта пурӑнакансен те, аякри чӑвашсен те ытти халӑх ҫыннисем пирте Федоров паллисене курмалла шая ҫӗкленмелле. Чӑваш Енре, ытти регионсенче пурӑнакан чӑваш Пӗтӗм Раҫҫей халӑх ҫыравӗнче «Эпӗ – чӑваш» тесе ҫыртарни те хамӑра хисеплениех пулӗччӗ.

**Вера КУЗЬМИНА, СССР халӑх артистки, Чӑваш АССР Патшалӑх премийӗн лауреачӗ:**

– Чӑваш наци конгресӗ нумай ӗҫ турӗ, тӑвать те. Тӗнче тӑрӑх сапаланнӑ чӑвашсемпе ҫыхӑнусем йӗркелеме тытӑнни уйрӑмах савӑнтарать. Эпир культура, экономика енӗпе те нумай нациллӗ Раҫҫейре, тӗнчере сумлӑ вырӑн йышӑнма тивӗҫлине кӑтартса патӑмӑр. ЧНК тӑрӑшнипех республикӑмӑрта чӗлхе саккунӗ ӗҫлет. Вӑл пирӗн пурнӑҫӑмӑрта ҫав тери кирлине, халӑх никӗсне чӗлхе тытса тӑнине нихӑҫан та манмалла мар. Чӑвашран талантлӑ ҫынсем нумай тухнӑ. Ҫавна май хамӑрӑн ырӑ ӗҫӗмӗрсене Раҫҫей анлӑшӗнче ытларах та ытларах кӑтартмалла. Хамӑрпа хамӑр хупӑнса пурӑнмалла мар. Ытти халӑхсенчен те вӗренмелле, лайӑххине, ыррине чӑваш пурнӑҫне кӗртмелле.

Паллах, малтанхи ҫулсенче хавхалану вӑйлӑрахчӗ. Халӑх вӑранма тытӑнчӗ, наци туйӑмӗ самай ҫӗкленчӗ. Ҫав хавхаланӑва сӳнме памалла мар, чӗртсех тӑмалла. Ӑнланатӑп: укҫа-тенкӗ ҫитсех пыман чух ертӳҫӗсене ӗҫлеме ҫӑмӑл мар. Апла пулин те ҫамрӑксен тӑрӑшаҫҫӗ, хӑйсенчен мӗн килнине тума ӑнтӑлаҫҫӗ. Вӑй-хал та чӑтӑмлӑх сунатӑп вӗсене.

**Вячеслав ОРИНОВ, Чӑваш патшалӑх ҫамрӑксен театрӗн илемлӗх ертӳҫи, ЧР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ:**

– Кӗр енне, халӑх каларӑшне шута илсе, ҫут ҫанталӑк йӗркипе «чӗпсене» шутлама пуҫлатпӑр: шултра улма, ҫуллӑ пысӑк кӑркка… Кӗскен – пурӑннӑ чух вӗтти кӑмӑлах каймасть пулмалла пире.

Тепӗр чух шутлан-шутлан та «вӗтелсе каймарӑмӑр-ши эпир?» тетӗн. Вак-тӗвек ӗҫсем питӗ нумай тӑватпӑр. Питӗ кирлӗ ӗҫсем! Пӗчӗк юхан шывсем пуҫтарӑна-пуҫтарӑна лӑпкӑн та мӑнаҫлӑн сарӑлса юхакан, хӑйӗн ӗмӗрне яланлӑха ҫирӗплетекен тата хӑйсене хисеплеттерекен анлӑ Атӑл пек пӗр еннелле сулӑнни курӑнсах каймасть. Сумли кӑшт сулӑнсанах физика саккунӗпе килӗшӳлӗн «тапранса» каймалла та…

«Кашни чӑваш – хӑй патша», – тенӗччӗ паллӑ та хисеплӗ ӑсчах. Патшасен ҫӗрӗ-шывӗ пулсан шухӑшӗ-идейӑсем те, ӗҫӗ-хӗлӗ те патшасеннинчен кая пулмалла мар пек туйӑнать. Вӗтӗр-шакӑр, ӳрӗк-сӳрӗк, лӑпӑс-лапӑс… сас янрать. Кӗтӗр-шанӑр! Ӳлӗм пулӗ! Утӑр харӑс! – ӑс парать. Ытлашши сӳтӗлсе аркансах каяр мар-ха. Хамӑр вырӑна пӗлсе Ҫӳлти Турра тимлер. Вара мухмӑр-сухмӑр арпашӑвӗсенчен хӑтӑлса таса ӑс-тӑнпа ҫывӑхрине те, аякрине те курса, пӗр-пӗрне илтсе, тустӑванлӑха туйса, несӗлӗмӗрсем хӑйсен элтеперӗсем хыҫҫӑн пынӑ евӗр утар малалла. Пӗрлештерекеннисем: чӗлхе, истори, культура, кӑмӑлсипет, ӗмӗр-ӗмӗрӗпе туптаннӑ хамӑр хушӑмӑрти нихҫан кивелми ҫыхӑну-хисеп т.ыт.те.

…Тем чӑрмантарать, чуна кӑшлать, кӐнӑҫлӑха ҫухатать, сӑн-сӑпата нӗрсӗрлентерет… Вара пуҫлатпӑр айӑпа яттисенче шырама. Вӑт! Тӗк вӗҫтеретпӗр вара чун каниччен…

Вӑхӑт иртсен, лӑплансан – ӗҫӗ-пуҫӗ, вӗҫӗ-пуҫӗ хамӑртах иккенне чухласа илсен илтмӗш-пӗлмӗш тӑватпӑр. Чӑваш «страусӗсем» тейӗн!

Вӗттӗн шутлатпӑр – вӗттӗн утатпӑр, «шултран» шутлатпӑр – инҫе каятпӑр.

**Владимир СТЕПАНОВ, ҫыравҫӑ фантаст:**

– Ячӗ-шывӗ мӗне тӑрать – Чӑваш наци конгресӗ тени еплерех мӑнаҫлӑ янӑрать. Пирӗн асаттесем тӗлленмен те ҫак сӑмахсене. Ӑнланатӑн та, йоккӑр-маккӑр, пӗлетӗн: пирӗн те пур халӑх чӑн органӗ, хӗсӗр мар эпир, этнос институчӗ пур чӑвашӑн. Иртсе пыран Ехрем хуҫа керменӗ – Чӑваш халӑх ҫурчӗ – патӗнчен те ура тупанӗпе кӑна мар, троллейбусӑн чунсӑр резина кустӑрмипе туятӑн: пирӗн шӑпа пирки шухӑшлаҫҫӗ унта, пӑшӑрханаҫҫӗ.

Халӑх шӑпи те малашлӑхӗ, ыратӑвӗ те нуши пирки хӑйсене шеллемесӗр ӗҫлекенсем асапран, темле майпа, ӗҫре ларнӑ ҫӗртех хыпса ҫунса кайрӗҫ е республикӑри чи тӗттӗм кӗтесе, халӗ те электричество кӗртмен яла, тен, Америкӑри чӑвашсем патне тухса тарсан та – эпир пӗлетпӗр, ӗненетпӗр: ан тив, Халӑх ҫуртӗнче тек никам та ан пултӑр, пур пӗр Чӑваш наци конгресӗ тӗтӗм кӑларса ӗҫлесе ларать. Ҫулталӑкӗпе пушӑ лартӑр ҫурчӗ, халӑх ҫакна сисмӗ, Конгресс пур тесе тар кӑларса ӗҫлӗ.

Ҫак ӗнену тӗн шайне ҫитеймест хальлӗхе. Тарӑхтарать ку. Хевтине Конгресс халӑха кӑтартаймарӗ. Результат ҫукки те результат тенине шута илсен кунта та ӑнланмалла. Этнос институчӗ пур, наци вара, мӗнле шел, паян кун та ҫук. Ҫак хирӗҫлеве пула перспективлӑ Халӑх ҫурчӗ хӑна ҫурчӗ пек кӑна курӑнать. Кӗлӗ туса пуҫ ҫапас вырӑнне атеистла туйӑмсем вӑратакан тепӗр кӑлтӑк та пур этнос институчӗн – Конгресс тытӑмӗпе архаизм. Ҫӗнӗ турӑсен самани картишре, Конгресс вара халӗ те Чӑваш парти обкомӗпе тухӑҫлӑн кӗрешнӗ пек туйӑнать. Ҫук пирӗн халӑхӑн вӑхӑт машини, ӑсатаймастпӑр эпир хамӑр Конгреса каялла – XX ӗмӗре.

Пур пӗр кӑмӑллӑ Шупашкар курса ҫӳреме, паянхи кун Чӑваш Республикин шӗкӗр хулинче мӗн кӑна ҫук: трактор завочӗ, агрегат завочӗ, пир-авӑр комбиначӗ, Чӑваш наци конгресӗ.

**Геннадий УТКИН, республикӑри профсоюзсен канашӗн пай пуҫлӑхӗ – «Время» хаҫатӑн тӗп редакторӗ, Раҫҫей писателӗсен союзӗн членӗ:**

– Иртнĕ 10 çулта Чăваш наци конгресĕ хăй мĕн тума пултарас тенине тума тăрăшрĕ. Анчах (мĕншĕн пур-ши çак сăмах!)... хăйĕнчен килмен сăлтавсем Конгреса ăнăçлă ĕçлеме нумай чăрмантарчĕç. «Чăваш, чăваш!» тенипех чăвашлăха сыхласа хăварма май çук. Патшалăх пулăшăвĕ, укçа-тенкĕ кирлĕ. Шăпах çаксем çитсе пымаççĕ. Чăваш кĕнекине вулакансен йышĕ сахалланчĕ. Кĕнекесем сайра-хутра кăна тухкалаççĕ. Журналсен тиражĕсем 60–70 пинрен 1–2 пин экземпляра анса ларчĕç. Конгресс активисчĕсем чăвашлăха чĕртес тесе ырмиканми тăрăшсан та – вĕсен йышĕ çĕр-ик çĕр çынран ытла мар. Вунă пин тиражлă кĕнеке, утмăл пин экземпляр тиражлă журнал тунă ĕçе ăçтан-ха çĕр-ик çĕр çын тума пултартăр!

Çав вăхăтрах «Хыпар» хаçат темиçе хаçат уçса («Çамрăксен хаçачĕ», «Чăваш хĕрарăмĕ», «Кил-çурт, хушма хуçалăх», «Сывлăх» тата ытти те) чăвашла тухакан хаçатсен тиражĕ чакассине чарса лартрĕ. Çĕнĕ хаçатсен тематики те питĕ анлă.

Тĕрлĕ регионсенче Наци конгресĕн филиалĕсем, уйрăмĕсем уçăлни – начар мар пулăм. Анчах вĕсенчен хăшĕ-пĕри тĕплĕн, лайăххăн ĕçлени çитмест. Чăваш наци культура автономийĕ теççĕ те хăш-хăш регионта, пăхатăн та – чăвашла калаçма пĕлекен çынни те çук. Ĕç тăвас тени вара ун пек чухне вăййа çаврăнать.

Конгреса ертсе пыракансем çинчен те пĕр-икĕ сăмах калас килет. Пуçаруллисем, маттуррисем, ăслисем пур. Çапах та пуçаруллин пысăк ăс çук, ăсли пуçаруллă пуласшăн мар. Кашни кунхи хура ĕçрен хăрать. Укçасăр ĕçе кашниех тума пултараймасть çав.

Çапах та Наци конгресне йĕркелени чăваш пурнăçĕнче çĕнĕ утăм пулчĕ. Малашнехи çулĕ тата та уçăлса пытăрччĕ унăн.

**Илья ТЕПЛОВ, «Елчĕк крахмалĕ» агрофирмăн генеральнăй директорĕ:**

– Пирĕн хушăра «Чăваш наци конгресĕ нимĕн те тăваймарĕ» текенсем пур. Ман шутпа, кун пек калани тĕрĕс мар. Мĕншĕн тесен Конгресс ертÿçисем ĕçленине курсах тăратăп. Калăпăр, чăвашсем нумай пурăнакан регионсенче вĕсем чăваш наци культура автономийĕсем, культура обществисем йĕркелерĕç. Пĕрре те çăмăл ĕç мар ку. Анчах та, тĕпрен илсен, хальхи вăхăтра Чăваш наци конгресне çĕнĕ шухăшкăмăллă, малашлăха курса ĕçлеме пултаракан пысăк шайри çынсем ертсе пымалла. Хальхисем общество, чăваш халăхĕ умĕнчи тивĕçне пурнăçланă. Вĕсене тав сăмахĕ çеç каламалла.

Паян Наци конгресĕн çĕнĕ, тата та пысăкрах пусăмра ĕçлемелле. Мĕншĕн çак сăмахсене чĕрене ыраттарса калатăп-ха? Вăт эпир тутарсемпе кÿршĕллĕ пурăнатпăр. Вĕсемпе тĕл пулатпăр, калаçатпăр. Шухăшĕ-ĕмĕчĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе вĕсем пирĕнтен темиçе хут çÿлерех тăраççĕ. Эпир, Конгресс ертÿçисем ĕнтĕ, министрсене те витĕм кÿрейместпĕр, тутарсем вара Кремльпе пĕр тан калаçаççĕ. Çакна Раççей Президенчĕ Владимир Путин нумаях пулмасть Хусанта иртнĕ Тутарсен пĕтĕм тĕнчери конгресне Çĕпĕртен тÿрех вĕçсе килни те яр уççăнах çирĕплетет. Унтах Путинăн Атăлçи федераци округĕнчи представителĕ Кириенко та пурччĕ. Пирĕн Аслă пухăва Кремлĕн пĕрпĕр чиновникĕ те пулин килĕ-ши? Каларăн тейĕн, никам та килмĕ, вăл шутра Кириенко та. Мĕн çинчен калать ку?..

Юрать Николай Васильевич Федоров Президент пур пирĕн. Пĕртен пĕр вăл çеç халь чăвашăн ятне-сумне Раççей, Европа тăрăх сарать. Чăваш Республики тесен те тÿрех Федоровпа Николаев космонавта аса илеççĕ, Наци конгресне мар.

Тăванăмăрсем, атьăр-ха «кашни чăваш – хăй патша» пулма пăрахар. Вара, тен, тутарсен шайне çĕкленме те мехел çитерĕпĕр.

**Александр САМАКИН, «Заходи» лавкка хуçи, Шупашкар хулин депутачĕсен Пухăвĕн депутачĕ, «Юрату» ушкăн продюсерĕ:**

– Конгресс хастарĕсем ĕç тумасăр ларманах пулĕ-ха, анчах унăн курăмлă ĕçĕ, чĕлхе саккунне йышăнтарас тесе тăрăшнисĕр пуçне, курăнсах каймасть. Хамăр вара «эпир 2 миллионлă халăх» тесе кашни кĕтесре кăкăр шаккатпăр. Вăт шутласа пăхăр-ха: паянхи кун пирĕн республикăра чăвашла калаçакан, кăтартакан ятарлă пĕр телеканал та çук. Кÿршĕре апла мар-çке. Калăпăр, Тутарстанра икĕ канал калаçать, кăтартать. Пушкăртстанра та çавнашкалах. Ăнланатăп: укçа-тенкĕсĕр халĕ нимĕн те тăваймастăн. Çапах та пĕтĕм ĕçе коммерци çине куçармалла мар ĕнтĕ. Ман шутпа, Конгресс чăваш ĕçне тăвать пулсан ун валли патшалăх бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăрмалла. Унпа мĕнле усă курнине çирĕп тĕрĕслесе тăмалла. Пĕр тенкĕ тыттармалла та «мĕн турăр?» тесе икĕ тенкĕлĕх ыйтмалла.

Чăваш наци конгресĕн ятне, хăватне çÿллĕрех шая çĕклес тесен унăн ертÿçин хăюллăрах, сатуртарах пулмалла. Кăçал çулла диаспорăри чăвашсем валли Шупашкарта аслăлăх конференцийĕ иртрĕ. Çак форумра ЧНК ертÿçи Геннадий Архипов, Чăваш Республикин Президенчĕпе Николай Васильевичпа çуммăн пулмаллискер, чи кайри рете кайса ларнă. Аптриш ĕнтĕ, пĕр сăмахпа каласан.

*«Хыпар», 26.09.2002, 180–181№.*

## ЧНК V АСЛĂ ПУХĂВĔН ПРЕЗИДИУМĔН ЙЫШĔ

**Николай Васильевич Федоров** – Чăваш Республикин Президенчĕ
**Михаил Алексеевич Михайловский** – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ
**Александр Дмитриевич Муратов** – Федерацин Чăваш Республикин тĕп инспекторĕ
**Наталия Юрьевна Партасова** – Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ
**Вячеслав Максимович Краснов** – Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн пĕрремĕш сумĕ – физкультурăпа спорт министрĕ
**Ольга Григорьевна Денисова** – Чăваш Республикин культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министрĕ
**Геннадий Никандрович Волков** – академик
**Атнер Петрович Хусанкай** – ЧНК хисеплĕ президенчĕ
**Геннадий Николаевич Архипов** – ЧНК президенчĕ
**Николай Константинович Бровцин** – Иваново облаç администраци пуçлăхĕн сумĕ
**Михаил Зиновьевич Васютин** – Мари Эл Республикин Правительствин пуçлăхĕн çумĕ – культурăпа наци хутшăнăвĕсен министрĕ
**Олег Николаевич Викторов** – ЧНК вице-президенчĕ
**Ираида Витальевна Захарова** – Эстонири чăваш культура пĕрлĕхĕн ертÿçи
**Анатолий Иванович Иванов** – Мускаври чăваш наци культура автономийĕн председателĕ
**Владимир Александрович Иванов** – ЧНК вице-президенчĕ
**Александр Петрович Капитонов** – ЧНК вице-президенчĕ
**Анатолий Ильич Кибеч** – ЧНК Ваттисен Канашĕн председателĕ
**Алексей Петрович Леонтьев** – ЧНК вице-президенчĕ
**Виталий Владимирович Марусин** – Ульяновск облаç администраци пуçлăхĕн сумĕ
**Ольга Вениаминовна Немцева** – Санкт-Петербургри чăваш пĕрлешĕвĕн ертÿçи
**Василий Васильевич Николаев** – экономика наукисен докторĕ, Оренбургри «Шурăмпуç» чăваш наци культура пĕрлĕхĕн делегачĕ
**Георгий Захарович Орлов** – Чăваш Республикин Президенчĕн Пушкăртстан Республикинчи полномочиллĕ элчи
**Надежда Петровна Осипова** – Самар облаç администрацийĕн тĕп специалисчĕ, облаçри «Хастар» чăваш наци культура пĕрлешĕвĕн вице-президенчĕ
**Виталий Петрович Никитин (Станьял)** – ЧНК Аслă пухăвĕн председателĕ
**Вячеслав Александрович Тимофеев** – ЧНК вице-президенчĕ
**Георгий Петрович Шушпанов** – Пушкăртстан Республикинчи чăвашсен Канашĕн (Пухăвĕн) председателĕ
**Константин Геннадьевич Яковлев** – Тутарстан Республикинчи чăваш наци культура автономийĕн председателĕ

### ЧНК АСЛĂ ПУХĂВĔН ЙĔРКИ (РЕГЛАМЕНЧĔ)

Аслă пуху пĕлтерĕшĕ (статусĕ)

1.1. Чăваш наци конгресĕн Аслă пухăвĕн пĕлтерĕшĕпе вырăнне Уставра уçăмлăн кăтартса хăварнă: вăл пĕтĕм пĕрлĕхĕн чи аслă органĕ шутланать, чăваш халăхĕн тĕрлĕ çĕрте пурăнакан йышне хăй тавра чăмăртаса ĕçлет. Аслă пуху тăван халăх ырлăхĕшĕн, ăс-пурлăхĕшĕн, аталанăвĕшĕн кĕрешет. Конгресс ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă чи пысăк ыйтусене татса парать.

1.2. Аслă пуху – пĕтĕм чăваш тĕнчи хăй ирĕкĕпе суйласа янă делегатсен пĕрлĕхĕ. Суйланă делегат пуху ĕçне хастар хутшăнма тивĕç.

Халăх суйланă делегат (конгрессмен) тивĕçĕ Аслă пуху хыççăн тепĕр пухуччен вăйра тăрать. Вăл хăйсене суйланă халăх умĕнче явап тытать, тĕл пулусем ирттерет, ЧНК ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа парать, вырăнти пĕрлĕх ĕçне хастар хутшăнать.

1.3. Аслă пухăва хăна шучĕпе чăвашлăх ĕçне хастар хутшăнакан паллă çынсене – тĕпчевçĕсене, çыравçăсене, ӳнерçĕсене, вĕрентӳçĕсене, тавра пĕлӳçĕсене, ĕçпе çар паттăрĕсене, наци ĕçне йĕркелекенсене тата ытти хастар çынсене чĕнеççĕ. Вĕсем сасăлава хутшăнмаççĕ, сĕнӳсемпе канашсем пама пултараççĕ.

Делегат е канашлу сассиллĕ кирек хăш çын пирки пухăва сивлек хут пырсан пуху ăна ларăва кĕртесси-кĕртмессине сасăласа татса парать.

## Пуху ларăвĕсем

2.1. Суйланă конгрессменсен çурри ларăва хутшăнсассăн вăл тулли сасăллă шутланать.

2.2. Суйлав сасăлавĕпе çыхăннă ларăва конгрессменсене шута илсе (регистрацилесе) кĕртеççĕ.

2.3. Аслă пуху ларăвĕсем ирĕклĕн те уççăн иртмелле. Хиврелĕх сиксе тухсан пуху хупă лару ирттерме пултарать. Хупă лару йышăнăвне ун хыççăнхи уçă ларура пĕлтереççĕ. Хупă ларăва конгрессменсем пурте е пуху ятарласа палăртнă делегатсем хутшăнаççĕ.

2.4. Аслă пухăвăн пĕрремĕш ларăвне ЧНК Мăн Канашĕн председателĕ кĕске сăмах каласа уçать. Ларăва ертсе пыраканĕ Аслă пухăва конгрессменсемпе хăнасен йышĕпе паллаштарать, Пухăва сасăласа уçать. Малалла ларусене йĕркелӳ комитечĕн пуçлăхĕ, элтепер (президент), унăн çумĕсем е пуху кĕреки (президиумĕ) сĕннĕ урăх çын черетленсе ертсе пыраççĕ.

2.5. Пĕрремĕш ларура ĕç тытăмне, кун йĕркине çирĕплетеççĕ. Вĕсене йĕркелӳ комитечĕ сĕнет.

Конгрессменсемпе хăнасен Пуху йĕркипе çыхăннă тата ытти сĕнĕвĕсемпе асăрхаттарăвĕсене секретариата çырса памалла. Тавлашу сиксе тухсан икĕ енрен те пĕр çынна кĕскен итлеĕ хыççăн ыйтăва сасăлама тăратмалла.

2.6. Аслă пуху чăвашла иртет.

2.7. Аслă пуху ларăвĕсене инçекурăмпа (телевиденипе) тата ытти хыпарлав хатĕрĕсемпе халăх умне кăлармалла.

## Аслă пухăвăн ĕç пайĕсем

3.1. Аслă пухăва тытса пыма делегатсенчен пуху кĕрекине (президиумне), çыруçăлăхне (секретариатне), тĕременлĕхне (редакци ушкăнне), мандат, шутлав тата ытти ĕç ушкăнĕсене йĕркелеççĕ, сасăласа çирĕплетеççĕ.

Сасăлав уççăн иртет.

3.2. Ĕç тытăмĕ халĕччен çирĕплетнĕ йĕркесемпе пулса пымалла.

3.3. Пуху ертӳçин тухса калаçакансен сăмахĕсем пирки ăнлантарусем пама юрамасть. Анчах вăл тĕп ыйтусемпе конгрессменсен ушкăнĕсене пухса канашласа илме пултарать.

3.4. Çыруçăлăх, мандат ушкăнĕ тата ыттисем халĕччен çирĕплетнĕ йĕркепех ĕçлеççĕ.

## Тухса каланисем

4.1. Тĕп доклад 30 шӳшменлĕх (минутлăх), çум докладсем 15–20 шӳшменлĕх. Тухса калаçакансене пĕрремĕш хут – 7 шӳшмен, иккĕмĕш хут 3 шӳшмен тивет. Пуху тухса калаçакансен черетне тата вăхăтне улăштарма пултарать.

4.2. Делегатсен тухса калаçма пуху çыруçăлăхне хут çырса сăмах ыйтмалла. Пуху хăнисем çыруçăлăх сĕннипе Пуху ертӳçисенчен ирĕк илсен кăна калаçма пултараççĕ.

4.3. Сăмах панă чухне регионсен черетне шута илмелле.

4.4. Пухури çын ертӳçĕ ирĕк памасăрах тухса калаçма е кăшкăрма тытăнать пулсан ăна ятарлă хурал пухуран кăларса ярать.

4.5. Тухса калаçакан делегат сӳтсе явакан ыйтуран пăрăнса сăмахлать пулсан, пĕрре асăрхаттарнă хыççăн та тĕп ыйту патне таврăнмасть пулсан Пуху ертӳçи ăна калаçма чарать.

4.6. Пухури кашни конгрессмен хăйсене тивнĕ критика пирки лару вĕçĕнче кĕске тӳрлету, ăнлантару пама пултарать.

## Йышăнусем, сĕнӳсем, тӳрлетӳсем

5.1. Тĕрлĕ йышăнусен проекчĕсене йĕркелӳ комитечĕ, регионсенчи пĕрлĕхсем, делегатсен ертӳçисем ларусем пуçланиччен тăратмалла.

5.2. Кирек хăш конгрессмен хăйĕн хирĕçле проектне, сĕнĕвне, тӳрлетĕвне çыруçăлăха çырса пама пултарать.

## Сасăлав

6.1. Кашни делегатăн пĕр сасă. Вăл ăна урăх çынна пама е кая юлса сасăлама пултараймасть. Канашлу сассиллĕ хăнасем сасăламаççĕ. Пуху йышăнăвĕ çурринчен ытла сасă пухсан вăя кĕрет.

6.2. Сасăлав уçă, вăрттăн тата ятран пулма пултарать. Вăрттăн тата ятран сасăлава ларури конгрессменсен 1/3 пайĕ ыйтнипе ирттереççĕ.

6.3. Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтупа сасăлас умĕн Пуху ертӳçи делегаци ушкăнĕсене шухăша çавăрма пĕр шӳшмен вăхăт пама пултарать.

## Саламсем пани

7.1. Аслă пухура пил, салам сăмахĕсем кĕске те виçеллĕ пулмалла. Парнесене пĕрлĕх апатĕнче пани лайăх.

7.2. Пуху ЧНК гимнĕпе уçăлса хупăнать.

## ЧНК V Аслă пухăвĕн çыруçăлăхĕн йышĕ

**Н.В. Давыдов,** «Самар ен» облаç хаçачĕн редакторĕ
**В.Н. Лукьянов,** Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш çамрăкĕсен театрĕн артисчĕ, ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ
**О.В. Семенова,** «Хыпар» хаçат корреспонденчĕ
**Н.Г. Смирнова,** ЧНК фончĕн правлени членĕ
**А.Г. Терентьева,** ЧНК хастарĕ
**А.А. Шашина,** РФ Патшалăх Думин депутачĕн пулăшуçи, Мускаври чăваш наци культура автономийĕн правленийĕн членĕ

## ЧНК V Аслă пухăвĕн тĕременлĕх комиссийĕн йышĕ

**Г.Н. Архипов,** Чăваш наци конгресĕн президенчĕ
**С.А. Карягин,** пенсионер, ЧНК хастарĕ
**А.П. Леонтьев,** ЧНК вице-президенчĕ, «Хыпар» ИÇ генеральнăй директорĕтĕп редакторĕ
**В.Л. Никитин**, «Агросоюз» корпорацин сăнав канашĕн ертӳçи
**В.П. Мидуков,** ЧР Президент Администрацийĕн ертӳçи
**К.П. Портнов,** ЧНК фончĕн правлени председателĕ
**В.Н. Оринов,** Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш çамрăкĕсен театрĕн илемлĕх ертӳçи, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ
**Е.Г. Разумова,** пенсионерка, ЧНК хастарĕ
**В.П. Станьял,** ЧНК Аслă пухăвĕн председателĕ
**И.Г. Тарасов,** Ĕпхӳри вырсарни чăваш шкулĕн директорĕ
**К.Г. Яковлев,** Тутарстан Республикинчи чăваш наци культура автономийĕн председателĕ

### ЧНК V Аслă пухăвĕн шутлав комиссийĕн йышĕ

**Е.Е. Ерагин,** Муркаш районĕнче чăваш чĕлхине вĕрентекен
**С.Н. Минейкин,** И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕ
**А.В. Медведева,** Шупашкар хулинчи 4-мĕш вăтам шкулта чăваш чĕлхине вĕрентекен
**Т.В. Семенова,** И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн студентки
**В.Г. Тяпкин,** Шупашкарти строительство материалĕсен завочĕн коммерци пайĕн пуçлăхĕн çумĕ

## ЧНК V Аслă пухăвĕн мандат комиссийĕн йышĕ

**В.А. Абрамов,** И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ
**А.И. Волков,** Мускаври чăваш наци культура автономийĕн президиумĕн членĕ
**В.И. Ермаков,** Элĕк районĕнчи Калинин ячĕллĕ хуçалăх ертӳçи
**Ю.Н. Михайлов,** Пушкăртстанри «Урал сасси» хаçат редакторĕ
**О.Н. Мустаев,** Ульяновск облаçĕнчи «Эткер» фонд пуçлăхĕ

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĕН V АСЛĂ ПУХĂВĔН КУН ЙĔРКИ

**2002, авăн, 25, юн кун**

**13.00** – хăнасене кĕтсе илни, пурăнма вырнаçтарни.
**13.00–14.00** – кăнтăрлахи апат.
**14.00–15.00** – Чăваш Республикин министерствисемпе ведомствисенчи ĕçлĕ тĕл пулусем.
**15.00** – Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров Раççей Федерацийĕн регион делегацийĕсен пуçлăхĕсене йышăнни.
**16.00** – Раççей Федерацийĕн тĕрлĕ вырăнсенчен килнĕ делегаци хастарĕсемпе

Чăваш наци конгресĕн çуртĕнче пухăнса калаçни.
**17.00** – ЧНКна пулăшакан организацисенче ĕçлени (каçхи апат).

**2002, авăн, 26, кĕçнерни кун (Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ)**

**7.30–8.15** – ирхи апат.
**8.15–8.50** – Аслă пуху делегачĕсемпе хăнасене регистрацилени.
**9.00–9.05** – Чăваш наци конгресĕн Аслă пухăвĕ уçăлни.
**9.05–9.15** – ваттисем пил пани. Чăваш халăхĕн «Алран кайми аки-сухи» гимнĕ.
**9.15–9.25** – Аслă пухăвăн ĕç органĕсене суйлани (президиум, çыруçăлăх, тĕременлĕх, мандат, шутлав комиссийĕсем).
**9.25–9.30** – Аслă пухăвăн кун йĕркине, регламентне çирĕплетни.
**9.30–9.50** – Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн сăмахĕ.
**9.50–10.00** – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн М.А. Михайловскин сăмахĕ.
**10.00–10.50** – Чăваш наци конгресĕн ĕçтăвкомĕн отчетлă доклачĕ, çум докладсем.
**10.50–11.00** – ревизи комиссийĕн отчечĕ.
**11.00–11.20** – тăхтав; «Паянхи чăваш тумтирĕ», «Чăваш кĕрешĕвĕ» куравсем.
**11.40–12.30** – Аслă пуху делегачĕсем калаçни.
**12.40–13.00** – мандат комиссийĕн пĕлтерĕвĕ.
**13.00–14.00** – кăнтăрлахи апат.
**14.00–15.15** – секцисенче ĕçлени.
**15.30–16.10** – секцисен пĕрлехи ларăвĕ: секци ертÿçисен пĕтĕмлетĕвĕ.
**16.10–17.15** – резолюцисем йышăнни.
**17.15–17.45** – Чăваш наци конгресĕн ертсе пыракан органĕсене суйлани (Мăн Канаш йышне тата президента).
**17.45–17.55** – Чăваш наци конгресĕн V Аслă пухăвне вĕçлени.
**17.55–18.15** – тăхтав; «Чăваш костюмĕ – авал тата паян» кĕнеке презентацийĕ.
**18.15–19.00** – Чăваш Республикин ÿнер ăстисен концерчĕ.
**19.00** – уяв кĕреки.

**2002, авăн, 27, эрне кун**

**8.00–8.40** – ирхи апат.
**9.00–10.30** – Мăн Канаш ларăвĕ; ЧНК Президиумĕн йышне суйлани (Чăваш патшалăх пукане театрĕ).
**10.00–12.30** – «Н.Я. Бичурин еткерлĕхĕ тата паянхи ăслăлăхпа культура аталанăвĕн ыйтăвĕсем» ăслăлăх конференцине хутшăнни.
**10.45–12.45** – Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăлти космонавтика музейне çитсе курни.
**13.00–14.00** – кăнтăрлахи апат.
**14.00** – сыв пуллашу.

## ЧĂВАШ ТĂНĂÇЛĂХĔ – РАÇÇЕЙ ПУЯНЛĂХĔ

*ЧНК V Аслă пухăвне пуçтарăнмалли самант та çитрĕ. Ĕнер Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ Раççейри 30 яхăн регионтан, Латвипе Эстониren, Казахстанпа Беларуçрен, ытти çĕртен килнĕ делегатсемпе хăнасене тараватт йышăнчĕ.*

Президиумра – ЧР Президенчĕ **Н.В. Федоров**, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ **М.А. Михайловский**, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ **Н.Ю. Партасова**, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн пĕрремĕш çумĕ–физкультурăпа спорт министрĕ **В.М. Краснов**, **Г.Н. Волков** академик, ЧНК хисеплĕ президенчĕ **А.П. Хусанкай**, ЧНК президенчĕ **Г.Н. Архипов**, ЧР культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министрĕ **О.Г. Денисова**, РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Раççейри Федераци чăваш наци культура автономийĕн председателĕ **А.Г. Аксаков**, ЧНК Аслă пухăвĕн председателĕ **В.П. Станьял**, ытти регионсен делегацийĕсен ертÿçисем, сумлă хăнасем.

**В.П. Станьял** Пухăва уçса авалхи йăлапа ватăсене сăмах пачĕ. ЧНК Ваттисен Канашĕн ертÿçи **А.И. Кипеч**, **Н.Е. Наумов** элмен, СССР халăх артистки **В.К. Кузьмина** Пухăва пуçтарăннисене пил пачĕç. Чăваш халăхĕн кун-çулĕ малашлăхра ăнăçуллă пултăрччĕ, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем пурнăçа кĕрсе, чăвашсем пĕр-пĕринле пухăнса йышланса пыччăр, чăваш сăпки чăваш ялĕнчен ан çухалтăрччĕ терĕç.

Пухăва хутшăнакансем çавăн пекех икĕ Аслă пуху хушшинче чăвашлăх ĕçĕн хастарĕсем, ЧНК Мăн Канашĕн членĕсем А.И. Лукиянов, Э.А. Кадеров пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнишĕн хурланса пĕр самант ура çинче шăп тăчĕç.

Унтан ЧР Президенчĕ **Н.В. Федоров** сăмах илчĕ (хаçатăн паянхи номерĕнче пичетленнĕ). Николай Васильевича республикăра пурăнакан чăвашсен çеç мар, пĕтĕм чăваш тĕнчин шăпи шухăшлаттарать.

ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ **М.А. Михайловский** хăйĕн сăмахĕнче чăвашлăх тымарĕсем самаях вăйланнинче, тăван халăхăн чыс-сумĕ ÿснинче ЧНК витĕмĕ те пуррине палăртрĕ, ăна малашнехи ĕçре ăнăçу сунчĕ.

Пуху ячĕпе килнĕ саламлă телеграммăсемпе **В.П. Станьял** паллаштарчĕ. Раççей халăхĕсен Ассамблейин ертÿçи **Рамазан Абдулатипов,** Самар облаç кĕпĕрнаттăрĕ **Константин Титов**, Раççей Культура министерстви тата ыттисем те саламлаççĕ. РФ Патшалăх Думин ертÿçин **Геннадий Селезневăн** саламне Патшалăх Думин депутачĕ **Анатолий Аксаков** илсе çитерчĕ.

ЧНК президенчĕ **Геннадий Архипов** Конгресс 10 çул хушшинче утса тухнă çул-йĕре хакларĕ. Хальхи вăхăтри ĕçсем тĕллевлĕн пурнăça кĕрсе пынин сăлтавĕсене ЧНК президенчĕ влаçпа пĕр чĕлхе тупса пынинче курать. Республика Президенчĕ, Правительство пулăшнипе ЧНК штаб-хваттерлĕ пулса тăчĕ, ытти çăмăллăхсемпе усă курать.

Çав вăхăтрах Конгресс хастарĕсен йывăрлăхсем те çук мар. Бюджетран укçа илсе тăмасть ЧНК. Патшалăха хăй налуксем тÿлет, çынсене ĕç вырăнĕллĕ тăвать. Çавна май пурлăх никĕсĕ çирĕпех мар-ха. Инçе çула тухса çÿресси, пысăк мероприяти ирттересси вара укçа-тенкĕпе çыхăннă. Чăвашлăх ĕçĕ тата çирĕпленсе пытăр тесен ЧНКна патшалăх енчен тивĕçлĕ пулăшу татах кирли пуриншĕн те паллă.

Федерацин Атăлçи округĕн Чăваш Енри инспекторĕ **Д.М. Донсков** РФ Президенчĕн представителĕн С.В. Кириенкăн саламне вуласа пачĕ. Çавăнпа пĕрлех инспекторăн сăмахĕнче пĕр шухăш питĕ килĕшрĕ. Сăвăласа калама тăрăшса пăхрăм та çакăн пек йĕркесем килсе тухрĕç: «Чăваш тăнăçлăхĕ – Раççей пуянлăхĕ». Мĕн палăртасшăнччĕ-ха Д. Донсков? Раççейре çакăн пек лăпкă, мирлĕ кĕтес урăх ниçта та çуккине. Çакăн пек тăнăçлăх вара Раççейĕн чăн шанчăкĕ, пуянлăхĕ. Тепĕр çул Шупашкар спорт мероприятийĕсемпе çеç пуян пулмĕ, 2003 çулта Шупашкар «культура тĕп хули» ятпа та çÿрĕ. Çавăнпа та диаспорăри чăвашсемшĕн те кунта кăсăкли пайтах пулĕ.

**Г.Н. Волков** академикĕн сăмахĕсене хумханмасăр итлеме çук. Вăл каланă кашни сăмах, шухăш ахах-мерченпе тан. Несĕлĕмĕрсен 2–3 пин çул каяллахи пилĕсене аса илсе залра ларакансене шухăша ячĕ: «Ачăр-пăчăра усала ан парăр, хăвăрпах хăварăр», «Чи малтан киле упрăр», «Тĕпелĕр кĕлĕ вырăнĕ пултăр», «Алăк урати урăрсене чуп тутăр, килте телей хуçалантăр»...

ЧНК хисеплĕ президенчĕ **А.П. Хусанкай** чăваш халăх утса тухнă çула тишкерсе пĕтĕмлетÿсем тунă. Мĕн пĕтĕçтерсе, ытти халăхсенчен уйăрса тăрать-ха ăна? Чи малтанах чăваш наци пĕрлĕхĕ, тăванлăх пурри. 2–3 пин çул хушшинче вăл тем те тÿснĕ, çапах çухалса кайман, иккĕмĕшĕнчен, ăс-хакăллă, пултаруллă çынсем йышлă пулни. Малашне вара тĕнче шайĕнче ĕçлеме вĕренмелле, çапах та хамăрăн ăс-пурлăха упраса хăвармалла, чăваш пуçĕпе, юнĕпе юлмалла.

ЧНК Аслă пухăвĕн председателĕ **В.П. Станьял** ЧНК ĕçĕнчи çитменлĕхсене уççăнах палăртрĕ. Шел те, хальлĕхе эпир тулай чăвашĕсем патне хăнана çеç çÿретпĕр, вĕсене конкретлă пулăшмалла терĕ. Чăвашлăха çĕклеме май паракан, пулăшакан мелсем пирки те чарăнса тăчĕ вăл.

Аслă пуху ячĕпе тĕп хулари Иван Яковлев, Константин Иванов, Çеçпĕл Мишши палăкĕсен умне чечек çыххисем кайса хучĕç.

Кăнтăрлахи апата кайиччен Тутарстан Республикин Патшалăх Канашĕн Президиумĕн членĕ **Р.И. Валеев**, Ульяновскри «Эткер» фонд ертÿçи **О.Н. Мустаев**, Оренбургри чăваш наци культура пĕрлешĕвĕн членĕ, техника ăслăлăхĕсен докторĕ **В.В. Николаев** (сăмах май, вăл ЧНКн 2001 çулхи премине тивĕçнĕ), Иваново облаç администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ **Н.К. Бровцин** сăмах каларĕç.

Апат хыççăн та тухса калаçакансем йышлă пулчĕç. Мăн Канаш суйларĕç, ЧНК президенте Г.Н. Архиповах хăварчĕç.

Надежда СМИРНОВА.

## ĔНЕР ШУПАШКАРТА ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН V АСЛĂ ПУХĂВĔ ИРТРĔ

**ЧР Президенчĕн Н.В. Федоровăн сăмахĕ**

Хаклă ентешĕмсем, ырă çыннăмăрсем, хăнасем!

Раççейри 25 регионтан тата Никама Пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлĕхне кĕрекен пилĕк çĕр-шывран Чăваш наци конгресĕн пиллĕкмĕш Аслă Пухăвне хутшăнакан ентешсене Чăваш çĕрĕ çинче ăшшăн саламлатăп. Çак паллă кун эсир çакăнта пуçтарăнни Чăваш Енре пурăнакансемшĕн пысăк уяв.

«Тăван çĕр-шывсăр этем йăвасăр вĕçен кайăк пек», – тенĕ ваттисем. Çак залра пуçтарăннă çынсен, хăйсене тăван халăхăмăр йăвинчен тухнăскерсем тесе туякансен, кăмăл-туйăмĕ çавăнпа çутă та таса. Кун пек чухне эсир чăвашла е тутарла, пушкăртла е вырăсла калаçни пĕлтерĕшлех те мар. Эсир хăвăра этносăн пысăк пĕрлешĕвĕн уйрăлми пайĕ пек туйни пĕлтерĕшлĕ, унăн ячĕ – Чăваш. Несĕлĕрсем, аçăр-аннĕр, асламăр, аслă асламăр, тен, вĕсен аслă аслашшĕ хăш ĕмĕрте тата мĕн сăлтавпа тăван кĕтесрен тухса кайни пĕлтерĕшлех те мар. Вĕсен ачисем, мăнукĕсем, мăнукĕсен ачисем хăйсен шухăш-тĕллевĕпе, çуначĕсемпе Чăваш çĕр-шывне туртăнни уйрăмах хаклă. Вĕсем чăвашла калаçасшăн, чăвашла юрласшăн, çулăмлă поэтăмăр Çеçпĕл Мишши ĕмĕтленнĕ пек ĕмĕтленесшĕн. Унăн вилĕмсĕр сăввисене эпир сире валли тепĕр хут пичетлесе парнелĕх илсе килтĕмĕр. Чуна пырса тивекен йĕркесен вырăсла куçарăвĕ урлă ачăрсем, мăнукăрсем, вĕсен ачисем çак поэзин чечекне, Çеçпĕл чечекне чунпа туйччăр, поэт туйăмĕн хăватлăхне кăна мар, пĕтĕм чăваш халăхĕн туйăмĕн мăнаçлăхне туйса илччĕр, этнос пуçламăшне таврăнма пултарччăр, тăван халăхăн, амăшĕн чĕлхин асамлăхне ăша хывччăр.

Çавăнпа та, политика е конъюнктура ăнлавĕсене хирĕçлесе те-и, эпĕ сирĕнпе паян хам пĕлекен тата юрататкан Конгреса – Чăваш Ене – Раççейĕн çĕр-çĕр ялĕ-хулинчен кăна мар, чикĕ леш енчен те пухăннă делегатсем пурте ăнланакан тăван чĕлхепе хутшăнас темерĕм.

Паян çак залра пĕрремĕш форумăн делегачĕ, хăни пулнă çынсем пурах. Чăваш наци конгресне йĕркеленĕренпе 10 çул иртни вăл – ахаль вăхăт иртни кăна мар. Вăл тĕнчере те, Раççейре те, Чăваш Республикинче те пысăк улшăнусем пулса иртнĕ çĕнĕ самана. Чăн тата шухăшласа кăларнă пуянлăхсене, экономика тата мораль ăнлавĕсене, патшалăх пĕлтерĕшĕ пирки уçăмлăрах курма-туйма хăнăхрăмăр. Наци тĕнче курăмĕ те палăрмаллах çĕнелсе аталанчĕ. 10 çул каялла Раççей патшалăхне тума пикеннĕ çынсем мал ĕмĕтлĕ кăна мар, çамрăклăх иллюзийĕсемпе те тыткăнланнă. Суверенитетсен «парачĕ», никама пăхăнманлăх пирки деклараци йышăнни те, çĕнĕ, чăннипех федераци Раççейĕ тума хăтланни те – кусем Аслă Истори страницисем. Çав Истори хăйĕн çимĕçне пачĕ: тутлине те, йÿççине те.

Паян эпир ас тивекен çав çимĕç планета çинче пурăнакансене Ырă Ăса вĕрентмелле. Унăн аксиомисем чуна-юна, ăс-тăна, кулленхи пурнăça кĕрсе вырнаçмалла.

Наци ыйтăвĕн хакĕ – ăнланмалла мар, преступлениллĕ граждан вăрçисенче пирĕн ывăлсем геометри прогрессийĕн виçипе вилеççĕ пулсан – çав тери хăруша.

**Çĕнĕ Раççей тăвакансен хушшинче сирĕнтен чылайăшĕ пулнах, эпĕ те пулнă. Эпир пурте тапхăрăн-тапхăрăн, çул хыççăн çул патшалăх строительствин университечĕ витĕр тухнă. Çакна çирĕппĕнех шанатăп: пурнăç материалне тивĕçлипе йышăнакан ăнăçлă вĕренекен студентсем пулнă. Çавăнпа та эпир паян уççăнах ăнланатпăр: хальхи патшалăхсем кăна мар, уйрăм континентсем те хăйсем тĕллĕн пурăнаймаççĕ. Финанс, информаци юхăмĕсем кирек епле чикĕ урлă та каçаççĕ, вĕсенчен нимĕнле Китай стени те, тинĕс-океан та çăлса хăвараймасть. Мĕн пур патшалăх, мĕн пур этнос пĕр-пĕринпе çыхăннă.**

Суверенитет çĕнсе илессишĕн хăш-пĕр хĕрÿ çынсем тÿлеме хатĕр хак, пин-пин (е çĕр пин) ентеш пурнăçĕн тÿлевĕпе çыхăнни питĕ те ытлашши, тата вăл çитĕнÿ тĕшшине йÿнетет. Суверенитет пирки ĕмĕтленнине пурнăça кĕртнĕ нацисем вун-вун çуллăха нишлĕхе, вăрçă-харçа кĕрсе ÿкнĕ, пысăк финанс парăмĕсем пухнă, культурăра, наукăра, искусствăра чакса пынă, диктатура енне куçнă, ăс-тăн енчен хавшаса пынă пирки чылай тĕслĕх илсе пама пулать. Тепĕр енчен – нацисем федераци патшалăхĕсен йышĕнче питех те лайăх адаптациленни, çакă вĕсене экономика тăнăçлăхĕ, çар, политикăпа право хÿтĕлевĕ, этносăн хăйсене евĕрлĕхне сыхласа хăварма гарантилени, ăна малалла аталанма пулăшни пирки хальхи тĕнчере сахал мар тĕслĕх пур.

Пирĕн Чăваш Республики те – территорипе пысăках мар, анчах Раççей Федерацийĕнчи чи йышлă этноссенчен пĕрин тăван килĕ – геополитикăн нумай факторне пăхăнса тăрать. Анчах вăл хăйĕн ыранхи кунне ирĕклĕн суйласа илме пултарать. Мĕншĕн тесен унăн гражданĕсем хăйсен ыранхи пурнăçĕ мĕнле пулассине харпăр хăй тĕллĕн татса параççĕ. Нишлĕ, мĕскĕн, ыйтакан субъект е хăвăрт аталанакан регион пулассии вĕсенчен килет. Регион чĕр тавар платформи çуккине пăхмасăр çирĕп тата тухăçлă аталанать, çав хушăрах пирĕн пысăк федерацин нумай йышлă этносне тĕлĕнмелле тĕслĕхсем кăтартать.

Çавăнпа та çак аслă трибуна умĕнче тăрса, сирĕнпе калаçса, сире куçран пăхса хальхи Чăваш патшалăхĕн миссийĕ унран аякра тата çывăхра пурăнакансемшĕн, унпа сывлакансемшĕн, ăна юратакансемшĕн, ăна чечекленÿпе тăнăçлăх сунакансемшĕн мĕн тери пĕлтерĕшлĕ пулнине туятăп. Республика Президенчĕ пулнă май, Чăваш Енĕн социаллă пурнăçпа экономика, политикăпа кăмăл-сипет климачĕ кунта пурăнакансемшĕн, чăваш диаспорин пысăк йышĕшĕн, пирĕн пур туссемпе ĕçлĕ партнерсемшĕн меллĕ пултăр тесе хамран мĕн килнине пĕтĕмпех тăватăп. Сăнарлă каласан – пирĕн климат температури наци политикинчи пирĕн çул тĕрĕс пулнине çирĕплетет.

Çак 10 çул та Чăваш Енре нацисен хушшинче тăнăçлăх хуçаланни, политика тата социаллă тăнăçлăх экономикăра та, культурăра та анлăн тымар яни – çакă пурте çынсемшĕн суверенитетшăн хыпса çунакансен мифлă, практикăра усă курайми тата аркатуллă тĕллевсенчен пин хут хаклăрах. Мĕн хаклăрах пулнине урамри ахаль çынсенчен ыйтар-ха. Вĕсемшĕн хăйсен тата социаллă пурнăçăн тăнăçлăхĕ хаклăрах пулнине курса ĕненетĕр. Çакă чипер этемшĕн йĕркеллĕ япала, вĕсем тĕрĕс шутлаççĕ.

Чăваш халăхĕн çак ирĕкне палăртса, чăваш халăхне, çĕр-шыври пур нацие те Раççей Конституцийĕ тата унăн федераци тытăмĕн принципĕсем май паракан право, йĕркелÿ, финанс, экономика, культура тата ытти мелĕсемпе усă курса эпир вĕсене пурнăça кĕртетпĕр. Çак принципсем пире шкул учебникĕсене кăларнинчен пуçласа пирĕн патшалăхăн право никĕсĕсене парламент çĕнетĕвĕсем таранах наци ыйтăвĕсене татса пама пулăшаççĕ.

Паянхи Чăваш Ен – федерацин ертсе пыракан тытăмĕсен специалисчĕсемшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ, «пилотлă», новаторла регион. Вĕсен шутĕнче Раççейĕн Экономика аталанăвĕн, Финанс, Вĕрентÿ, Сывлăх сыхлавĕн министерствисем, Строительство тата Спорт комитечĕсем. Асăннă отрасльсен картинче йĕркеленнĕ чăваш опычĕ пĕтĕм Раççей Федерацийĕн экономикипе социаллă сферишĕн кăтартуллă пособи шутланать. Манăн хисеплĕ ентешсем, паян мана федераци Правительстви тата Раççей Президенчĕ пирĕн пилотлă проектсене, пире шаннине тÿрре кăларса пыни, пĕтĕм çĕр-шыври задачăсене ăнăçлă пурнăçлани пирки калама намăс мар.

Чăваш Республикин специалистсен (тен, чăваш чиновникĕсен тесен те тĕрĕсех) пултарулла, çÿллĕ шайри ĕçне экспертсем, халăхсен хуш-

шинчи паллă организацисен – Пĕтĕм тĕнчери банкăн, Тĕнчери тата Европăри çĕнетÿпе аталану банкĕсен – элчисем пысăк хак пачĕç. Пире çавăн пекех Пĕтĕм тĕнче сывлăх сыхлавĕн организацийĕ те манăçа хăвармасть. Чăваш Ене пулăшма вăл вун-вун миллион доллар куçарчĕ. Кун пек тараватлă хутшăнусем пулнă-и-ха унччен Чăваш Республикин? Халĕ пирĕн – ĕлĕкхинчен расна, пачах урăхла лару-тăру: Чăваш Ен 21-мĕш ĕмĕр хыççăн пурăнакан тăхăмсем валли те килпетлĕ, тăванла туйăмпа пиеленнĕ çирĕп никĕс хăварать.

«Халăхсен тăванлăхĕ – çĕр-шывсен пуянлăхĕ» тенин хаклăхне – ăна нимĕнле укçапа та виçме çук – пурнăç пĕрре çеç мар çирĕплетрĕ. Çулсем иртнĕçемĕн эпир пурте халăх энергетики тепĕр чух питех те хăрушă, курăмлă пурнăçран аякрах пулса тухма пултарнине ăнкартăмăр. Çакна çĕнĕ истори пулăмĕсем яр-уççăн кăтартса пачĕç. Наци ыйтăвĕ çав тери кăткăс япала – кунта васкаварла, мĕн пулса тухассине шутламасăр ĕçлеме юрамасть. Утăм хыççăн утăм тăватпăр эпир. Çак тĕллеве пурнăçланă май çĕнĕрен те çĕнĕрен ăнкаратпăр: наци ĕç-пулăмĕ ансат япала мар. Пирĕн наци юхăмĕ вара саккунлăха, ытти нацисене сума сăвакан, хисеплекен пулăм, патшалăха, саккунлăха, нацисен хушшинчи çыхăнăва сума сăвакан, хисеплекен юхăм.

Çапла шухăшлатăп: хăйĕн нацине хисеплекен çын яланах интернационалист пулнă.

Ытти халăхсен (мордва-и, çармăс-и, еврей-и) пултарулăхне хисеплекен çын кăна чăн-чăн интернационалист пулма пултарать. Ун пек çын халăх уйрăмлăхĕсене те тиркемест, ырлăх сунмасăр пахаламасть. Çавăнпах ĕнтĕ Чăваш Енре тутарсен, марисен, мăкшă-ирçесен, еврейсен наци культура пĕрлĕхĕсем ĕçлеççĕ. Чăваш наци конгресĕпе вĕсем тачă çыхăну тытаççĕ.

Çакăнпа пĕрлех эпĕ çак трибунăран пĕр шухăш каласа хăварасшăн: Чăваш наци конгресĕ хамăр патра та, ытти регионсенче те патшалăхăн наци политикине ĕçе кĕртме пулăшать. Патшалăхăн наци политикине пурнăçлама пулăшасси – пысăк пархатар! Чăваш наци конгресĕн уйрăмĕсем Раççей Федерацийĕн 25 субъектĕнче уçăлни те çакна çирĕплетет. Эпир вĕсене чун-чĕререн хисеплетпĕр, сăваплă ĕçсемшĕн тав туса пулăшса пыма тăрăшатпăр. Наци политики Чăваш Енре те, унăн тулашĕнче те – чи пысăк, кăткăс ыйтусенчен пĕри. Вĕрентÿ министерстви урлă – 8 килĕшÿ, Культурăпа национальноçсен министерствипе 12 килĕшÿ тунă. Вĕсене чăвашсем пурăнакан регионсен ертÿçисем те алă пусса çирĕплетнĕ.

Ыррăн асăнмалла: халĕ Раççейри 25 регионта чăваш наци культурин 55 центрĕ – тĕп уйрăмĕ – йĕркеленнĕ. Никама Пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлĕхĕнче пиллĕк вĕсем.

Çавăнпа та паянхи сулăмлă, ырă кунпа усă курса тăван çĕр-шывпа тытакан çыхăнусене татман, чăваш чĕлхине, культурине аякри çĕрте те аталантарма тăрăшакан, пирĕн правительствăна наци политикине, пысăк тĕллевсене пурнăçлама пулăшакан çынсене (уйрăмах Самар, Ульяновск, Пушкăртстанпа Тутарстан тăрăхĕсенче телевиденипе радио кăларăмĕсене, хаçатсене йĕркелесе янă хастарсене) чĕререн тав тăватăп.

Шел те, пирĕн республика бюджечĕ нефтьшĕн илекен долларсем çук пирки асăннă информаци хатĕрĕсене кирлĕ пек пулăшса пыраймасть. Çапах та эпĕ ЧНК хастарĕсем, тĕрлĕ регионти уйрăмсем хăйсен ĕçне малтанхи пекех вăйлăн, тĕллевлĕн туса пырасса шанатăп, ку ĕçре ăнăçу, ырлăх-сывлăх сунатăп.

Хаклă туссем!

Эсир çĕр-çĕр е пин-пин çухрăма пăхмасăр чăваш наци культуришĕн шухăшласа та пăшăрханса çула тухрăр, Шупашкара çитрĕр. Хальхи пурнăçăн улшăнса пыракан хутлăхĕнче чăваш наци культуришĕн, чăваш чĕлхишĕн, пĕтĕмĕшле аталанушăн пăшăрханакан-пăлханакан çынсене тав тумалла çеç. Авалхи йăла-йĕркене те, хальхи çĕнĕлĕхсене те упраса тата аталантарса пыракансемпе тĕл пулса калаçни – пархатар. Сирĕн куçăртан пăхса, сăмахăрсене итлесе эпĕ хамăн ĕçе те, влаçăн ытти органĕсен ĕçне те туллин тата тивĕçлипе хаклама пултаратăп...

«Пĕр алăпа тĕвĕ салтма та йывăр», – тет чăваш. Диаспора представителĕсемпе курса калаçни, – вĕсем влаç ĕçне тимлĕ тишкереççĕ, çав вăхăтрах пирĕн ĕçе аякран хаклаççĕ (кун пек чухне вара пур ыйту та уççăнрах курăнать), – мана Чăваш Ен Правительствин ĕçне йĕркелеме май парать тата эсир пулăшнипе малашлăх ыйтăвĕсене тĕрĕс татса пама хистет.

Хăйĕн çулне пĕлмен карапшăн çил çула май мар. Чăваш халăхĕ хăйĕн çулне 1551 çултах тупнă. Унтанпа вăл Историн çăмăл мар çулĕпе вырăс халăхĕпе пĕрле пырать. Эпĕ вара хальхи Чăваш Ен халăхĕшĕн мухтанса çапла каласшăн: Чăваш Ен Раççей йышне кĕнĕренпе 450 çул çитнине уявланă чухне Раççей тата ют çĕр-шыв делегацийĕсем, вăл шутра Раççей премьер-министрĕ Михаил Касьянов, Мускав тата Пĕтĕм Руç Патриархĕ II Алексий, çак çул-йĕре пысăк хак пачĕç. Ку çул – улшăну çулĕ, реформăсен çулĕ, чăн-чăн çитĕнÿсен çулĕ.

Улшăнусене, çĕнĕлĕхсене курас тесен Шупашкар урамĕсем, Чăваш Республики тăрăх курса çÿремелле. Унăн атмосферине, культурине туймалла.

<…>

Паянхи кун Чăваш наци конгресĕ республика Правительствипе муниципалитетсенче вăй хуракансемпе кăна мар, пирĕн диаспора пурăнакан Раççейĕн ытти субъекчĕсемпе те тачă çыхăнса ĕçлет. Конгресс чăваш халăхĕн паллă ывăл-хĕрĕсен юбилейĕсене ирттерме те чылай пулăшать. Пирĕн «конгрессменсем» наци мероприятийĕсене федераци шайĕнче ирттерме вĕренсе çитрĕç. Чăваш Ене Мускавпа çыхăну тытма Мускав чăвашĕсен наци культура автономийĕ чылай пулăшать.

Анчах ЧНК хăйĕн ĕçне культура тĕлĕшпе кăна хастар пурнăçлать-ха. Унăн ытти ĕçе анлăлатмалла – культурăра та, вĕрентÿре те, бизнесра та вăй хумалла. Çакна кура ытти регионсенчи йăхташăмăрсем Чăваш Ене аталантарма, бизнеса çĕклеме пулăшĕç. Пирĕн нумай йăхташ пысăк предприяти директорĕнче ĕçлет, вĕсем Чăваш Республикине килсех çÿреççĕ, чăваш халăхне хăйсем патне пырса çÿреме йыхравлаççĕ. Çавăн пек пулмалла та. ЧНКн чăваш бизнесменĕсемпе татах та аванрах ĕçлемелле. Бизнесменсен диаспорăпа çыхăнса хăйсен ĕçне Чăваш Ен тулашне кăлармалла.

Чăваш диаспорисем пĕр-пĕр ĕçе пурнăçлас тесен Чăваш Ене туллин шанма пултараççĕ. Республика сирĕн ĕç хăватне, Чăваш Ене аталантарас тесе тăрăшассине туллин шанма пултарать тесе шутлатăп. Камăн та пулин тăван кĕтесре çĕр туянас кăмăл, туртăну пулсан эпир сире Атăл хĕрринче çĕр парса тивĕçтерĕпĕр. Çакă сирĕн авалхи тăванăрсен ятне çĕклĕ. Ман шутпа, чăн-чăн чăвашăн çакă сăваплă та питĕ паха. Сирĕн хастарлăха кура эпир тĕрлĕ регионти администрацисемпе ĕçлеме хатĕр. <…>

Паян та, ыран та Конгресăн ĕçлĕ ларăвĕсенче эсир хăварах çитес çулсем валли хăвăр тĕллевĕрсене уçăмлă тата ăнланмалла палăртса хуратăр тесе шутлатăп. Хурланса тата кулянса тепĕр хут çакна палăртма тивĕç: пирĕн наципе обществăн икĕ организацийĕ – ЧНК тата ЧОКЦ – пĕрле канашласа ĕçлесшĕн мар, унсăр пуçне, хăш чух вĕсем конкурентсем евĕрлĕ те ĕçлеççĕ.

«Тăван тăвалла туртать», – тет чăваш халăхĕ. Çакăн пек пулсан аванччĕ. Анчах, шел те, час-часах эпир çак каларăша ăса хывмастпăр. Çакнашкал лару-тăру халĕ те пĕр-пĕринпе канашласа, пĕр организаци ертсе пынипе ĕçлеме пĕлмен Чăваш Ен писателĕсен хушшинче юлать. Çакă йăлтах вăй-хала сапалани, харкашу, энергие, сывлăха тата ресурссене пустуй пĕтересси патне илсе çитерет, анчах та ниепле те творчествăпа ăсталăх патне мар.

Чăваш наци конгресĕн çурчĕ Халăхсен туслăх çурчĕ пулса тăраймарĕ-ха. Унăн юсавĕ тăсăлса кайрĕ. ЧНК çуртне илемлĕ тĕспе сăрланă, анчах ку тĕс наци стилĕпе шайлашмасть. ЧНК ĕçĕнче сахал тиражлă «Ялав» тата «Тăван Атăл» журналсене пулăшас енĕпе реализмла тата интереслĕ çул-йĕр курмастăп. Çĕнĕ рынок условийĕсене шута илсе пирĕн диаспорăсене чăваш хаçат-журналне салатмалли мелсем çинчен съезда хутшăнакансенчен сĕнÿсем илтес килет. Çакăнпа кăсăкланакан çынсене, тытăмсене тупас, салатакан сеть йĕркелес – çакна пурнăçлама ЧНК вăй çитерейместь-и? Правительствăн вара диаспорăсене чăваш чĕлхипе литературине вĕренмелли кĕнекесемпе, методика пособийĕсемпе активлăрах пулăшмалла.

ЧНК наци культурипе искусствине тивĕçлĕ шайра тытса тăма, инкубатор е, халĕ мĕнле калаççĕ-ха, эстрадăри, литературăри, сăнарлă искусствăри тата театр сцени çинчи çĕнĕ çăлтăрсен продюсерĕ пулма хăйĕн витĕмĕпе усă курмалла. Чăваш диаспорин членĕсен Чăваш Енрен хушнипе тата унăн патшалăх вăйне шанса тăмасăр, нацишĕн хаклă вил тăприсене, историпе культура палăкĕсене, пултарулăх çăл куçĕсене сыхласа хăварма тата юсаса çĕнетме хăйсен тивĕçĕ тесе шутламалла.

Тĕнче XXI ĕмĕре кĕчĕ. Апла тăк çĕнĕ самана пур хатĕр-хĕтĕрпе усă курма ирĕк панипе ĕçе паянхи кун мелĕсемпе, çĕнĕ технологи никĕсĕпе пурнăçа кĕртмелле. Интернетра ЧНКн тахçанах хăйĕн сайчĕ пулмалла тесе шутлатăп. Сирĕнтен нумайăшĕ Чăваш Ен Президенчĕн администрацийĕн сайтĕнче «Диаспора» ятлă сыпăк пуррине пĕлет. Вăл – сире валли. Унта, манăн администраци ĕçченĕсен вăйĕпе, çĕр-шыв регионĕсенчи чăваш диаспорисем çинчен хыпарсем вырнаçнă – адрессем, хушаматсем, наци культура обществисен ертÿçисен телефонĕсем. Вĕсен пулăшăвĕпе сирĕнтен хуть хăшĕ те урăх регионта ентешсене тупма, тăванла пулăшупа усă курма пултарать. Ĕнер каçхине эпĕ ятарласа çак сайта пăхрăм. Мĕн куртăм-ха? Унта информаци сахал! «Диаспора çыннисем» сыпăкра – паллă ентешĕмĕрсен кĕске списокĕ, бизнесменсен списокĕнче – 18 çын кăна. Ăнланатăр-и: чăвашсен миллиона яхăн çынлă диаспоринче – 18 предприниматель! Хăна кĕнекинче пĕртен пĕр çыру, Мускаври Андрей Ильдеменовран, вăл çакнашкал проектшăн чунран савăнать тата пĕтĕм тĕнчипе саланнă ентешĕсемпе çыхăну шырать. Çакнашкал ĕçлеме, вăхăтран тата Интернетран çакăн пек юлма юрать-и-ха?! Ман шутпа, кунта пуçаруçăсен шутĕнче пирĕн «конгрессменсен» те пулмалла.

Манăн тата тепĕр пысăк та пĕтĕмĕшле тĕллев çинчен калас килет. Тата темиçе кунран пĕтĕм Раççейшĕн кирлĕ ĕç – халăх çыравĕ пуçланать. Ăна ирттерме хатĕрленесси пысăк та хаклă ĕç. Вăл мĕнле усă пани паха. Хисеплĕ ентешĕмсем, эпĕ сирĕнтен, хăвăрăн вырăнти витĕмĕпе усă курса, çырав материалĕсенче Раççейри чăвашсем çинчен тĕрĕс çырса кăтартма пулăшма ыйтасшăн.

Çакна акă мĕн пирки калатăп: хăш чухне çынсем, тĕрлĕ сăлтава пула, хăйсен национальноçне кăтартасшăн мар. Раççей Федерацийĕнче йышпа виççĕмĕш шутланакан чăвашсен каялла чакмалла мар, çырав хучĕсенче хăйсен национальноçне кăтартса пур хисепе ÿстермелле. Çĕр-шывра чăвашсем пирки лайăхпа çеç асăнаççĕ, вĕсен историйĕ мухтавлă, хальхи Раççейре вĕсен никамран та вăтанмалла мар.

<. . .> «Пĕр-пĕрин сăмахне ăнланса пурăнни, пĕр-пĕрне ырлăх сунни пурнăçа хăват парать», – тенĕ чăвашсене çутта кăларнă Иван Яковлевич Яковлев халăха пилленĕ халалĕнче. Чăвашсем! Пĕр-пĕрне ăнланма, пулăшма тăрăшăр, пĕр-пĕрне ырлăх кÿрĕр!

Пĕтĕм кăмăлтан пурнăçри çак питĕ кирлĕ пулăма палăртса хăварасшăн: Чăваш Ен влаçĕпе Чăваш наци конгресĕ паян пĕр-пĕрне лайăх ăнланса- хутшăнса ĕçлеççĕ. Шансах тăратăп: пирĕн ĕçлĕ хутшăнусем малашне тата усăллăрах та тухăçлăрах пулса пырĕç.

Чăвашсем: «Усал сăмах утпа çÿрет, ырри çуран çÿрет», – тесе калаççĕ пулин те паян Аслă пухура тунă пур лайăх та кирлĕ ĕç пирĕн диаспорăсем патне май килнĕ таран хăвăртрах çиттĕр кăна мар, вĕсен пурнăçне те кĕтĕрччĕ тетĕп эпĕ.

Çапла пултăр!

*«Хыпар», 27.09.2002, 182 №.*

## ЛАРĂВА ХУТШĂНМА ТА, МУЗЕЙПЕ ПАЛЛАШМА ТА МАЙ ТУПРĔÇ

*Чăваш наци конгресĕн V Аслă пухăвĕ Мăн Канаш суйлани, ЧНК президентне Г.Н. Архиповах хăварни пирки хаçатра пĕлтернĕччĕ. Ĕнер вара çĕнĕ Мăн Канаш хăйĕн пĕрремĕш ларăвне ирттерчĕ.*

Ун умĕн ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – пичет тата информаци политикин министрĕ **Н.И. Володина** республика тулашĕнчи массăллă информаци хатĕрĕсен хастар ĕçченĕсене министерствăн Хисеп грамотипе наградăларĕ. Çак чыса **И.Г. Тарасов** (Пушкăртстан), **Н.В. Давыдов** (Самар облаçĕ), **А.К. Иванов** (Тутарстан), **О.Н. Мустаев**, **В.Ф. Ромашкин** (Ульяновск облаçĕ), **И.И. Пахомов** (Чăваш Ен) тивĕçрĕç.

Н.И. Володина çавăн пекех диаспорăри чăвашсен пичет, радио тата телевидени ĕçченĕсене пулăшмалли майсем пирки те чарăнса тăчĕ. Йăхташăмăрсемпе тытакан çыхăнăва вăйлăрах çирĕплетес тĕллевсемпех регионсенче «Хыпар» хаçатăн корреспондент пункчĕсене уçма вăхăт çитнине палăртрĕ.

ЧР культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министрĕ **О.Г. Денисова** пĕлтернĕ тăрăх – çитес çул наци ыйтăвĕсемпе ĕçлеме бюджетран укçа-тенкĕ ытларах уйăрмалла. Çапла майпа министерство ĕçченĕсем, пултарулăх коллективĕсем ытти регионсене ытларах тухса çÿреме пултарĕç. Нумаях пулмасть Шупашкарта тулайри чăваш çамрăкĕсен фестивалĕ иртнĕччĕ. Ăна йĕркелеме хутшăннисене О.Г. Денисова министерствăн Тав хучĕпе чысларĕ. Пушкăртстанри чăвашсен «Канаш» ĕçтăвком председателĕ **Г.П. Шушпанов**, Тутарстанри чăваш наци культура автономийĕн председателĕ **К.Г. Яковлев**, Ульяновск облаçĕнчи «Атăл» патшалăх телевиденипе радио комитечĕн ĕçченĕ **О.Н. Мустаев**, Тюмень облаçĕнчи чăвашсен **«Тăван»** культура центрĕ ячĕпе пулчĕ ку. Самар облаçĕнчи Тольятти хулинчи «Телей» фольклор ансамбльне йĕркеленĕренпе кăçал 10 çул çитрĕ. Унти хастарсем ЧР Культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерствин парнине тивĕçрĕç.

Мăн Канаш ларăвĕнчи уйрăмах пĕлтерĕшлĕ самант: ЧНК Президиумне суйлани. Ун умĕн вара ЧНК президенчĕ Г.Н. Архипов, çĕнĕ Уставпа килĕшуллĕн, вице-президентсене палăртрĕ. **Пĕрремĕш вице-президент – В.А. Иванов, вице-президентсем – В.П. Станьял, В.А. Абрамов, В.Г. Тяпкин, А.П. Леонтьев, В.А. Тимофеев, О.Н. Викторов. Вĕсене, ЧНК президентне тата А.П. Хусанкая, В.И. Лукьянова, В.Н. Ермакова, М.Н. Краснова, З.Н. Портновăна, Н.И. Дмитриевăна, В.Л. Никитина Президиум йышне кĕртрĕç.**

ЧНКна пулăшакансен канашĕ те пулĕ малашне. Ăна ертсе пыма **А.П. Капитонова** шанчĕç. Ваттисен Канашĕ халĕччен ăнăçлă ĕçлесе пынăччĕ. Ларура çамрăксен те çавăн пек Канаш питĕ кирлине палăртрĕç, сăмаха пурнăçа кĕртрĕç. Ун йышĕнче – республикăри, çавăн пекех тулайри çамрăксемпе студентсем. Вĕсемпе ĕçлеме ЧПУ доценчĕ **В.А. Абрамов** кăмăл турĕ.

Аслă пухура тухса калаçма май килменнисем Мăн Канаш ларăвĕнче хăйсен шухăш-кăмăлне пĕлтерес терĕç. Кунта та питĕ йышлă пулчĕç вĕсем. Иркутск облаçĕнчи чăваш наци культура автономийĕн председателĕ **А.И. Иванов** иртнĕ çул вун пĕр мероприяти ирттерни, Новолетники ялĕнче 30 çула яхăн «Йăмра» ансамбль ăнăçлă ĕçлени пирки пĕлтерчĕ. Çапах та пултарулăх ушкăнĕ тивĕçлĕ методика литератури çуккипе нушаланать-мĕн. Халĕ вара çак ыйтăва татса пама майсем пур, РНМЦ ĕçченĕсем пулăшĕç. Красноярск крайĕнчи чăваш наци культура автономийĕн ертÿçи **Г.И. Храмов** Чăваш Ен ертÿçисемпе тÿрремĕнех çыхăну тытса ĕçлемеллине асăнчĕ. Ун шучĕпе вара çапла тума май килмест-ха, кунти пуçлăхсем тулайсемшĕн пит «çунсах» тăмаççĕ-мĕн.

Лару хыҫҫӑн конгрессменсем «Н.Я. Бичурин еткерлӗхӗ тата паянхи ӑслӑлӑхпа культура аталанӑвӗн ыйтӑвӗсем» ӑслӑлӑх конференцине хутшӑнма та, Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Шуршӑлти космонавтика музейне ҫитсе курма та май тупрӗҫ.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 28.09.2002, 183№.*

## ЧӐВАШ ЭПИР – РАҪҪЕЙӖН АСЛӐ ХАЛӐХӖ

**(ЧНК V Аслӑ пухӑвӗ чӗнсе калани)**

XX ӗмӗрте чӑваш халӑхӗн наци ӑнланулӑхӗ палӑрмаллах ӳснӗ, ӑс-тӑн пуянлӑхӗ аталанса ҫирӗпленнӗ, вӑл тӗрлӗ ирӗксем ҫӗнсе илнӗ. Юлашки вунӑ ҫулта чӑваш халӑхӗн ячӗпе туса хунӑ Чӑваш Республикин тӗп тӗллевӗ патшалӑха ҫирӗплетесси пулнӑ, ҫавӑн пекех экономикӑра, культурӑра, политикӑра та ҫитӗнӳсем курӑмлӑ. Историлле ҫак процесра чӑваш тӗнчин пур вӑйӗ те – патшалӑх органӗсем, Раҫҫейри тата НППП ҫӗр-шывӗсенчи чӑваш наци культура пӗрлӗхӗсем, автономийӗсем, массӑллӑ информаци хатӗрӗсем, ӑслӑлӑх, вӗренӳ, культура, творчество ҫыннисем пӗр шухӑшлӑн ӗҫленӗ.

XXI ӗмӗре чӑваш халӑхӗ пӗрлехи наци пек кӗме пултарчӗ. Унӑн – пӗрлехи шӑпа, пӗрлехи чӗлхе, пӗрлехи культура. Ку – ҫӗнӗ ӑрӑва аталантармалли чи пысӑк пуянлӑх. Ку – пирӗн мӑнаҫлӑх, унӑн никӗсӗ – историе хисеплени, ытти халӑхсемпе килӗштерсе, туслӑ пурӑнни, хамӑрӑн тата ыттисен ӑс-тӑн пуянлӑхне хаклама пӗлни, сыхлама-упрама тӑрӑшни, вӑхӑтпа тан утни, ҫитменлӗхсене хӑрамасӑр критиклени, тӗрлӗ нушаран хӑтӑлма ӑнтӑлни, малашлӑха шанни.

Хисеплӗ йӑхташӑмӑрсем! XXI ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫулталӑкӗ чӑваш халӑхне – Раҫҫей Федерацийӗнче йышӗпе виҫҫӗмӗшне – тӗп тӗрӗслев витӗр кӑларать. Вӑл – кӑҫалхи юпа уйӑхӗн 9–16-мӗшӗсенче иртекен патшалӑх пӗлтерӗшлӗ мероприяти – Пӗтӗм Раҫҫей халӑх ҫыравӗ. Кунта чӑваш халӑхӗн пайланманлӑхне, мӑн-мӑн асаттесемпе аттесен еткерне сыхласа хӑварасси тӗп вырӑнта тӑрать. Ҫырав кашнин тивӗҫӗ пулнине пурте ӑнланатпӑр. Ҫырав кӑтартӑвӗсем пурнӑҫӑн тӗрлӗ сферинче тӗрӗс пӗтӗмлетӳ тума пулӑшаҫҫӗ. Ҫавӑнпа пурне те ҫырава хастар хутшӑнма чӗнетпӗр. Наци шӑпи, патшалӑхӑмӑрӑн малашлӑхӗ тӳрремӗнех халӑх йышӗпе-шучӗпе ҫыхӑннӑ. Ку уйрӑмах Раҫҫейре пысӑк пӗлтерӗшлӗ, мӗншӗн тесен тӑван чӗлхене ҫухатса вырӑсланас туртӑм халӗ те вӑйлӑ. Конституци прависемпе туллин усӑ куракан, наци культурине, чӗлхине, искусствине тата халӑх йӑли-йӗркине упрама-аталантарма ӑнтӑлакан чӑваш халӑхӗн пӗртен пӗр патшалӑхӗ – Чӑваш Республики. Чӑваш Ен республика статусне аталантарса пырсан ҫеҫ халӑхӑн ӑс-хакӑл ҫӑл куҫӗсем типсе лармӗҫ, вӗсем ытти регионта пурӑнакан чӑвашсене чӗрӗлӗх вӑйне парса тӑрӗҫ.

Хисеплӗ тӑванӑмӑрсем, йӑхташӑмӑрсем! Эпир, тӗрлӗ ҫӗр-шывра, Раҫҫей регионӗсенче пӗрлешсе пурӑнакан чӑвашсем суйланӑ V Аслӑ пуху делегачӗсем, сире чӗнсе калатпӑр:

кирек хӑш республикӑра, крайра, облаҫра, патшалӑхра пурӑнсан та тӑрӑшуллӑ, ӗҫчен, тӳрӗ кӑмӑллӑ пулар, кӳршӗсен историне, йӑли-йӗркине, тӗнне хисеплер;

кирек хӑш регионта ҫуралнӑ пулсан та, кирек ӑҫта пурӑнсан та, кирек мӗнле тӗне ӗненсен те, тӗрлӗ сӑлтава пула тӑван чӗлхепе ҫырма, вулама, калаҫма пӗлмесен те вак-тӗвек кӳренӳрен аякра тӑрар, хамӑра авалхи историллӗ, пайланман, сапаланман, аслӑ чӑваш халӑхӗн – пӑлхар-сӑварсен тӑсӑмӗн – тивӗҫлӗ ывӑлӗ-хӗрӗ тесе йышӑнар, ПӖТӖМ РАҪҪЕЙ ХАЛӐХ ҪЫРАВӖНЧЕ ХАМӐРА ЧӐВАШ ТЕСЕ ПАЛӐРТАР;

хамӑр пурӑнакан ҫӗр-шывсен саккунӗсем, тӗнчери право нормисем ҫирӗплетнӗ тулли ирӗксемпе усӑ курса нацийӗмӗрӗн йӑла-йӗркине упрар, вӑхӑтпа тан утар, хамӑр чӑваш пулнине ӗнентерсе прогресс патне ӑнтӑлар.

26.09.2002.
*«Хыпар», 1.10.2002, 184№.*

## ЧӐВАШ ЯТПАХ ПУРӐНАСЧӖ МАЛАШНЕ ТЕ

**(ЧНК президенчӗ Г.Н. Архипов Аслӑ пухура тунӑ докладран)**

Ырӑ, пархатарлӑ, ӑнӑҫлӑ та ӗҫлӗ, усӑллӑ кун пултӑр сире, чӑваш халӑхӗн V Аслӑ пухӑвне чӑвашсен тӗп хулине Шупашкара, Раҫҫейри чи хӑтлӑ хулана пухӑннӑ делегатсене, хӑнасене, уйрӑмах Тӑван ҫӗр-шывран аякра пурӑнакан тӑвансене! 10 ҫул каялла, 1992 ҫулхи юпа уйӑхӗн 8–9-мӗшӗсенче, Чӑваш Республикин Аслӑ Канашӗн Президиумӗ йышӑннипе Шупашкарта чӑваш халӑхӗн I Аслӑ пухӑвӗ, Чӑваш наци конгресӗ, пулса иртрӗ. Пӗлетӗп: ҫав Аслӑ пуху ӗҫне хутшӑннӑ ҫынсемшӗн вӑл нихӑҫан манӑҫми самант пулса юлчӗ. Шавлӑ иртрӗ Конгресс. Тӗнчери чӑвашсем пуҫтарӑннӑ-ҫке. Америкӑран та пурччӗ Хӗрлӗ Чутай чӑвашӗ. Конгресс палӑртнӑ тӗрлӗ йышӑнусенчен, резолюцисенчен халӗ нумайӑшӗ пурнӑҫланнӑ. Ун хыҫҫӑн пирӗн аякри тӑвансемпе ҫыхӑнусем вӑйлансах, тӗрекленсех пычӗҫ. Нихӑҫан курман-илтмен, пӗлмен чӑвашсем патне халӗ чӑн-чӑн тӑвансем патне кайнӑ пекех ҫӳретпӗр. Вӗсем савӑнӑҫлӑ, тӗреклӗ, ӗҫӗсем ӑнса пыраҫҫӗ пулсан пӗрле савӑнатпӑр, йывӑрлӑхра пӗрле хуйхӑратпӑр, май пур таран пӗр-пӗрне пулӑшма тӑрӑшатпӑр. Яланах ҫапла пултӑрччӗ.

<…> «Кашни халӑхах ҫӗр ҫинчи мӗн пур чӗрӗлӗх пекех йӑх тӑсма, малалла аталанма тӑрӑшать. Аталанӑвӑн пурнӑҫ тӗшши – ӑрулӑх сыпӑнса пынинче. Малашлӑха ҫухатнӑ харкам этем те, пӗтӗм халӑх та сӳтӗлсе каять, хӑйсене хӑй сӳнсе пӗтет. Чӑваш ҫынни ӗмӗрсен историйӗнче инкек-синкек, вӑрҫӑ-харҫӑ, асап-пусмӑр пайтах курнӑ. Чӑтӑмлӑхпа ӗҫченлӗх, тирпейлӗхпе ӑс-хакӑл ӑна чӑмӑртаса тӑнӑ. Вӑл хӑйӗн никамӑнни пек мар тӗнне, чӗлхине, йӑли-йӗркине, тӗрри-эрешне, хутшӑнусен тытӑмне аталантарса пыма, паянччен упраса хӑварма пултарнӑ. Ҫак еткерлӗхе иксӗлтерме юрамасть, ӑна татах пуянлатасси, ҫамрӑксене вӗрентсе хӑварасси ҫинчен халӗ питех те хытӑ шухӑшламалла. Ҫавӑнпа паян чӑвашсен, ытти кӳршӗ-аршӑ халӑх пекех, тӑван чӗлхене, шкула, йӑла-йӗркене чӗрӗлӗх кӗртсе аталантарас ыйтӑва татса памалла», – тенӗ Чӑваш наци конгресӗн пӗрремӗш Аслӑ пухӑвне йӗркелесе ирттерме тунӑ комитет тӗнчери мӗн пур чӑвашсене Чӗнсе каланинче.

Унтанпа нумай улшӑну пулчӗ Чӑваш тӗнчинче, чӑваш философийӗнче. Ӑс-хакӑлпа та, шалти туйӑмпа та эпир хамӑр улшӑннине туятпӑр. Ирӗклӗх сывлӑшне кӑшт ас тивсе пӑхнипе, ытти халӑхсемпе хамӑра пӗр тан туйнипе, хамӑр тӑван ҫӗр ҫинче кӑшт та пулин хуҫа пулнине туйнипе, тӑван чӗлхене шӑтӑкран туртса кӑларма тытӑннипе. Апла пулин те ЧНК I Аслӑ пухӑвӗ умӗн Чӗнсе каланин тӗп шухӑшӗ паян та вӑйра-ха. Паян та пирӗн ҫав тӗллевсемех. Авалхи чӑваш халӑхӗн малашлӑхӗ пулмаллах, вӑл ҫут тӗнчерен ҫухалма пултараймасть. Чӗлхемӗре, халӑхӑмӑра вара наци чӑмӑртӑвӗ урлӑ ҫеҫ упраса хӑварма пулать. Пӗр-пӗрне пулӑшсан, хамӑр мӗн тери аслӑ та ӑслӑ, ӗҫчен халӑх пулнине ҫитӗнекен ӑрӑва ӑнланма пулӑшсан малашлӑх пулатех. <…>

Хисеплӗ делегатсем, тӑвансем, чӑвашсем! Хамӑр шӑпамӑра тӳрремӗн витӗм кӳме пултаракан, ырана хӑвармасӑр тумалли ӗҫсенчен пӗри – кӑҫалхи ҫырав. Аслӑ Пухура илнӗ шухӑш-кӑмӑлпа, вӑй-хӑватпа съезд хыҫҫӑн вырӑна ҫитсе халӑхпа ӗҫлеме ыйтасшӑн, ӳкӗтлесшӗн эпӗ. Халӑх хут ҫинче те шутпа ҫук пулсан камсем пулса юлӑпӑр эпир? Влаҫра ларакан ҫынсене мӗнле ыйтусемпе хускатӑпӑр, тӗртӗпӗр, шавлӑпӑр? Шухӑшлӑр ҫакӑн ҫинчен, чӗре витӗр кӑларса шухӑшлӑр, тӑван-пӗлӗшӗрпе, юлташӑрсемпе, ӗҫтешӗрсемпе калаҫса, массӑллӑ информаци хатӗрӗсем урлӑ пӗлтерсе, ӑнлантарса парса халӑха ҫӗклӗр. Пӗрле пулса, тӑрӑшса ӗҫлесе чӑваш халӑхӗ пурӑнни, сахалланса-пӗтсе пыманни ҫинчен тӗнчене пӗлтерер.

***

Чӑваш наци конгресӗ 10 ҫулта тунӑ ӗҫсене тӗплӗн тишкерсе тухсан тӗрлӗ пӗтӗмлетӳ тума пулать. Ҫӗкленуллӗ самантсем те, хуйхӑрмалли, пӑшӑрханмалли те темӗн чухлех.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче, Раççейри халăхсен вăранăвĕн, чĕрĕлĕвĕн тапхăрĕнче йĕркеленнĕ ЧНК. Ăна националистсен йăвипе те танлаштарма пăхрĕç, ЧНК пĕрремĕш президентне А.П. Хусанкая тĕрлĕ майсемпе кӳрентерсе те шавларĕç. Çавна пула та, тен, чăваш халăхĕ пĕрремĕш хут хăйĕн çине çаврăнса пăхрĕ, çынсем шухăшлама, танлаштарма, суяпа ултава уяма вĕренчĕç. Халăхăмăрăн пуласлăхĕ пирки тавлашрĕç. Акă мĕн çырать ун чухне «Хыпар» хаçатра эпир хисеплекен ватă, ЧНК пĕрремĕш съездне уçма тивĕç пулнă М.Р. Федотов профессор: «Шупашкартах, чăвашăн тĕп хулинче, унтан начар пурăнакан кам пур-ши? Çичĕ ютран килсе тулнă партхозноменклатура пуять, алхасать. Вăл чее: чăвашран тӳрех кулмасть, чăваш хуçисем умĕнче йăпăлтатса мĕскĕн чăвашăн тирне сĕвет. Акă мĕн çинчен калаçмалла Чăваш конгресĕнче. Чăвашсем паян чăмăртанмасăр юлсан вăл халăх пĕтнĕ тесен те юрать».

Халăхсен этнопедагогикине йĕркелекенĕ, Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ Геннадий Никандрович Волков вара чăвашăн Тăван çĕр-шывĕ çуккишĕн пăшăрханнă, наци шкулĕ çукки те канăçсăрлантарнă ăна. «Наци шкулĕ çук тесе каларăм. Ку та чи хăрушши мар. Ман шутпа, пĕтĕмĕшпе илсен, тӳррĕн, чĕререн каласан, пирĕн Тăван çĕр-шыв та çук. Килти пек туймастăн пулсан – мĕнле Тăван çĕр-шыв пултăр вăл. Пуçлăх иккĕленсе калаçать пулсан, чăвашсем хушшинче пĕр вырăс пулсанах чăвашла калаçма хăратпăр пулсан. Эпир килти пек, Тăван çĕр-шыври пек мар пĕрре те. Халăх хăйĕн чунне, аваллăхне пĕлмесен вăл ниме те тăмасть – ун пек нимĕнле наци те пурăнаймасть. Пирĕн вара мухтанмалли, пĕлмелли темĕн те пур», – тенĕ вăл.

Çав асар-писер самантра йывăр, туртма çук лав ЧНК пĕрремĕш президенчĕ, республикăн Аслă Канашĕн комитет ертӳçи А.П. Хусанкай çине тиенчĕ. Эпĕ çав комитетра унпа юнашар ĕçленĕ май унăн чăтăмлăхĕнчен, ĕçченлĕхĕнчен тĕлĕнеттĕм. Чылай çул çав йывăр лава туртрĕ вăл. Паян пĕтĕм делегат ячĕпе ăна тав сăмахĕ калатăп. Аслă пуху ячĕпе тавтапуç сана, Атнер!

А.П. Хусанкай ăс-халĕпе малашне те ЧНК туллин усă курма пултарасса шанас килет.

Паян республика Президенчĕ, правительство пулăшнипе, пире ăнланма тăрăшнипе эпир штаб-хваттерлĕ пултăмăр. ЧНК Шупашкарти чи илемлĕ çуртсенчен пĕринче вырнаçнă. Çурта юсаса, хăтлăх туса усă курма тытăниччен самай вăхăт иртрĕ. Юсав ĕçне патшалăх та хутшăнчĕ, пулăшрĕ. Çителĕксĕр пулăшрĕ текенсемпе те манăн килĕшес килмест. Эпир пĕтĕм халăхпа ниме ирттертĕмĕр, хамăра хамăр тĕрĕслерĕмĕр. «Янтă япалан хакĕ çук», – тенĕ чăвашсем. Хамăр алăпа туни пуринчен те хаклăрах, çывăхрах. Конгресăн идейисене йышăнса, тăван чăваш халăхĕшĕн усăллă, кирлĕ пулнине çирĕплетсе 40 пин çын ытла тăван халăх çуртне тума пулăшрĕ. Сум вĕсене. ЧНК штаб-хваттерне йĕркелесе, юсаса çитерме эпир виçĕ çул ытла тăрăшрăмăр. Унччен 200 тăваткал метр лаптăкпа усă курнă, халĕ ăна 600 тăваткал метра çитертĕмĕр. ЧНК çурта тытса тăма, хăй тĕллĕнех пурăнма пултартăр, çак çурт пĕтĕм чăвашăн тĕп вырăн пултăр.

ЧНК йĕри-тавра тĕрлĕ çын пухăннă. Тĕрлĕ шухăш-кăмăллă вĕсем. Критиклекен те, вĕрентекен те нумай, анчах çанă тавăрса ĕçлекен сахал. Пĕлетĕп, курса тăратăп: хăшĕ-пĕри Конгресс ĕçне вăйлатасшăн мар, ура хума, пăтраштарма тăрăшать. Вĕсемпе пирĕн пĕр çул çук. Ĕçлес, пулăшас текенсене эпир яланах хапăл. Мĕншĕн тесен общество майĕпе, идейăшăн, тăван халăхшăн ĕçлекенсем пирĕншĕн чи хаклă çынсем. Çавăнпа пурăнать те Конгресс, çавăнпа ĕçлет те.

Паян ĕçлеме кăмăллакансене, тăван халăхшăн чунпа тăрăшакансене ĕçлеме пур майсем те пур. Пыр Конгреса, кĕр, ĕçле, сĕн, пурнăçлама пулăш е вăл е ку йышăну килĕшменнине пĕлтер, хăв çырса пар, Президиумра сӳтсе явма ыйтусем тăрат. Çапла кăна ĕçлеме май пур.

<...>

Çапах та ЧНК пурлăх никĕсне çирĕплетесси пирĕн çула май тунă ĕç тесе çеç шутлатăп. Эпир çав йывăр самантра та хамăр тĕллевсем çинчен манса кайман. Çĕр-çĕр тĕл пулу, чăваш ыйтăвĕпе çыхăннă мероприяти ирттернĕ. ЧНК çумĕнче йĕркеленĕ «Янра, юрă» фольклорпа эстрада ушкăнĕ кăна юлашки пилĕк çулта республика тулашĕнчи 400 яхăн ялта хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарнă, чăвашлăхшăн тăрăшма пултаракан çынсене суйлавсенче пулăшнă, юбилейсем е уявсем, тĕл пулусем ирттернĕ. ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ В.В. Христофоров ку ĕçе тулли кăмăлпа туса пырать.

ЧНК ĕçĕнчи тепĕр çĕнĕлĕх – чăваш кĕрешĕвне чĕртесси. Конгресăн спорт комитечĕн ертӳçи Н. Петров ку тĕлĕшпе нумай вăй хучĕ. Чăваш кĕрешĕвĕн хăйсене май вăрттăнлăхĕсене тĕпчесе, архиври хутсемпе нумай ларса çак ĕçĕн малтанхи утăмĕсене турĕ. Чăваш кĕрешĕвĕн ăмăртăвĕсем халĕ чăвашсем йĕркелекен нумай уявра иртеççĕ.

Юлашки çулсенче ЧР Культура министерствипе пĕрле «Кĕмĕл сасă» эстрада фестивальне ирттересси йĕркеленсе кайрĕ. Чăваш эстрада юррисене кăмăллакан çамрăксен унта хапăл тусах хутшăнаççĕ. Чăвашсем пурăнакан ытти регионсенче «Шăпчăк сасси» конкурс йĕркелени çамрăксен хушшинче пултаруллă юрăçсене тупса палăртма пулăшать.

Аякра пурăнакан чăвашсемпе çыхăнусене çĕнĕрен те çĕнĕрен йĕркелетпĕр, унта май пур таран тухса çӳреме тăрăшатпăр, нумай ыйтăва татса пама хутшăнатпăр. Раççейри федераци чăваш наци культура автономине туса хуни çав ĕçсенчен пĕри.

Республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсем пирки калама Самар тăрăхĕнчен пуçлам. Тольяттире А.П. Глухов, Самарта Н.В. Давыдов, Н.П. Осипова, Шунтал районĕнче В.Д. Петров тата ытти те хастар. Тĕллевсем пысăк: çитĕнекен ăрава чăвашлатасси. Ку тĕллевпе Самар тăрăхĕнче Чăваш патшалăх университечĕн филиалне уçас ыйтупа сахал мар утăмсем тунă. Студентсене вĕренме вырăн тупнă. Тĕллевĕ пĕрре: вырăнта аслă пĕлӳ илекенсем кунтах юлмалла.

Чĕмпĕрсем шкулсемпе лайăх ĕçленине палăртас килет. Чăвашла вĕрентекен шкулсен шучĕ кунта чакса мар, ӳссе пырать. Ку питĕ пысăк ĕç.

Тюменьре ĕçлĕ чăвашсем пĕр чĕлхе тупса чăмăртанма пултарнишĕн савăнатăп. Вĕсем халĕ тĕрекленчĕç, облаç ертӳçисемпе пĕр чĕлхе тупса пĕрлешме пултарчĕç. Эпĕ кăçал унти чăвашсен Акатуйĕнче пултăм.

Красноярскра чăваш наци культура автономине йĕркелени асăмра юлчĕ. Халăх нумай пухăннă. Конференцири калаçу та ĕçлĕ пулчĕ. Çавăнтанпа ЧНКпа Красноярск чăвашĕсен çыхăнăвĕсем самаях çирĕпленчĕç. Пермь облаçĕнчи чăвашсем патне ку таранччен Шупашкартан никам та пырса курман. Эпир артистсемпе унта çитсен ватăраххисем макăрса та илчĕç. Пермь облаç администрацийĕнче ĕçлекен С.В. Неганов пулăшнипе кунта чăваш наци культура автономине йĕркелеме, кăçал пĕрремĕш Акатуй ирттерме май килчĕ.

Эстонири, Латвири, Литвари, Беларуçри, Казахстанри чăвашсем юлашки çулсенче хăйсен сассине пама пуçларĕç. Турцире, Германире, Америкăра, Финляндире, Венгрире пурăнакан чăвашсем, хальлĕхе сахалăн пулин те, ЧНКпа çыхăну йĕркелеме тытăнчĕç. Çак ĕçре çитменлĕх питĕ нумай. Ют çĕр-шывсенчи чăвашсемпе çыхăнусене лайăхрах йĕркелессине малашнехи тĕп тĕллевсенчен пĕри тесе палăртмалла.

Пĕтĕм ыйтăва, паллах, ытама кĕртме çук. Çапах та тăрăшмалла. Чăвашлăх юхăмĕнче тĕрлĕ йывăрлăх пулсан та пирĕн çакна манмалла мар: Чăваш Республикинче чăваш чĕлхи вырăс чĕлхипе пĕр тан пулмасан халăхăмăр пĕтет, сут тĕнчерен сухалать. Паян çакăншăн эпир яваплă.

Чăваш чĕлхине шкулсенче вĕрентме тытăннă пулин те ăна чылай чухне çиелтен çеç тăваççĕ, экзаменсем тыттармаççĕ. Чи хăрушши

– чăвашла пĕлни кулленхи пурнăçра кирлĕ пулманни, ку тĕллевпе ятарлă условисем туманни чăваш ашшĕ-амăшне те хăйсен ачисене чăвашла калаçма вĕрентме хистемест те хавхалантармасть.

Чăваш çĕр-шывĕ – пирĕн тăван кил, пирĕн шанăç. Аякри чăвашсемшĕн те вăл чăн-чăн тăван кил пулса тăмалла. Мĕншĕн тесен Çĕр чăмăрĕ çинче чăвашăн урăх патшалăх тытăмĕ çук. Çавăнпа та аякри чăвашсемпе ĕçлес тĕлĕшпе республикăн витĕмĕ пысăкрах пулмалла. Чăваш халăхĕн I Аслă пухăвĕнчех делегатсем наци политики енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ туса хурасси çинчен резолюци йышăннăччĕ.

«Чăваш ятпах кĕретпĕр эпир çĕн ĕмĕр Аслă хапхинчен», – терĕмĕр эпир 2000 çулта иртнĕ ЧНК IV Аслă пухăвĕнче. Чăваш ятпах пурăнасчĕ малашне те, чăваш ятне çĕртмесĕр, çÿлте тытса, мăн асаттесемпе кукаçисем парса хăварнă чыслăх, килĕшÿлĕх, тăванлăх саккунĕсене пăхăнса. Пĕрле пуласчĕ!

Çапла пултăр!

*«Хыпар», 4.10.2002., 187№*

## ШАНЧĂКĂМĂР ПИРĔН ХАМĂРТАХ

Аслăран та аслă Конгресс! Чăваш ячĕпе пухăннă ырă çыннăмăрсем!

Сире пурсăра та Ваттисен Канашĕ ячĕпе чунран-чĕререн саламлатăп, ырлăх-сывлăх, ăнăçу сунатăп. Çамрăксене асра тытма çакна асăрхаттарас тетĕп. Тем çинчен шутласан та, тем çинчен калаçсан та Конгресăн тĕп тĕллевĕ пĕрре кăна. Çакă вăл чăваш халăхĕн умри кун-çулĕ. Мĕнлерех шăпа кĕтет-ха пире малашне? Иртни пирки калаçса, тавлашса çитет пуль, пуласлăха ăнтăласчĕ. Тăванлăхпа ирĕклĕх туйăмне вăйлатса пĕр халăх пулса тăрайăпăр-ши? Хăçан та пулсан пĕр килте пурăнса курăпăр-ши?

Эпир паян темле ĕçе те вĕренсе çитрĕмĕр. Космосра та пулса куртăмăр. Анчах чăваш пăхса çитĕнтерес ĕçе алла илеймерĕмĕр. Ытти халăхсене йышланма пулăшса пурăнни пире пачах та чыс кумест.

Çĕр-шывăмăр демократи çулĕ çине ÿкни пирĕншĕн япăх пулмарĕ: хĕсĕнсе, пăчланса çитнĕ чăваш чĕлхи уççăнрах сывласа ячĕ, наци юхăмĕ вăйланса пычĕ, Конгресс та туса хутăмăр. Пире паян чылай çĕрте асăрхаççĕ. Тĕнче умне тухнă ывăл-хĕрсен шучĕ ÿссех пырать. Ырă тĕслĕх Шупашкарта та сахал мар. Пирĕн пата халĕ хăнана кăна мар, вĕренме те килсе çÿреççĕ.

Çав хушăрах чăваш чĕлхине, чăваш культурине хисеплеменнине те курма пулать, уйрăмах хуласенче. Чĕлхепе культура саккунĕсене пурнăçланă çĕрте чăрмавсем сике-сике тухаççĕ. Çакна чылайăшĕ укçа-тенкĕ çителĕксĕррипе ăнлантарма пикенет. Пирĕн шутпа тĕп чăрмавсенчен пĕри – ертÿçĕсен, пуçлăхсен хушшинче чăвашсем сахалли. Ыттисем хисеплеччĕр тесен пирĕн пур çĕрте те хамăрăн хуçа пулма тăрăшмалла, ăмăртма, çĕнтерме вĕренмелле. Айккинчен килнĕ хуçасем пире ăнланакан çынсем мар. Тем тесен те – чăвашшăн чăвашах шанчăклăрах.

Чăваш ĕçĕ пурте пĕрле тумалли ĕç. Çавăнпа та делегатсемпе пĕрлех патшалăх тытăмĕнчи çынсене те асăрхаттарса калас килет. Ваттисен сăмахĕ ытлашши пулас çук. Чăваш сăпки чăваш ялĕнче. Çавна çăлса хăварасчĕ, арканма парас марччĕ, тата лайăхрах пулăшса пырасчĕ ăна. Унти ĕçпе пурнăç йĕркине çĕнетсе çирĕп сывлăхлă та ăслă чăвашсем çитĕнтересчĕ. Эпир начар йăхран мар. Йышлă та вăйлă халăх пулмалли хăват пирĕн юнра сĕвĕрĕлсе пĕтмен-ха. Хамăр тăрăшсан, чăваш тĕнчине тытса тăракан Аслă Туррăмăр пулăшса пырсан умри тĕллевсене пурнăçлама пулатех. Шанчăкăмăр пирĕн хамăртах.

Пĕрле пулăр, телейлĕ пулăр, пуçăр çине яланах ырлăх çуса тăтăр! Çапла пултăр!

Анатолий КИПЕЧ, ЧНК Ваттисен Канашĕн ертÿçи.
*«Хыпар», 5.10.2002,188№.*

## ТĂВАТĂ ЮПА

**(Чăваш наци конгресĕн V Аслă пухăвĕнче каланă сăмах)**

Чăваш халăхĕ пек тĕнчере урăх халăх çук. Сăпайлă, чун-чĕрепе çемçе (хăш-пĕр чух ытлашши те!), ĕçчен, тарават. Пархатарлă енĕсене каласа пĕтерме те çук. Пĕртен пĕр халăх – Турă суйласа илнĕ халăхăмăр.

Кашни халăхăн пурăнмалли, аталанмалли никĕсĕсем пулмалла. Пирĕн те, чăвашсен, вĕсем пур. **Чăваш тĕнчи тăват кĕтеслĕ** теççĕ.

*Пĕрремĕшĕ: чăваш пĕрлĕхĕ.* Вăл пур. Тĕнче тăрăх сапаланса кайнă чăваш халăхĕ çав пĕрлĕх, тăванлăх туйăмне яланах чун-чĕрере упранă. «Чăваш тĕнчи» текен ăнлав çĕр анлăшĕпе мар, тĕнпе те мар, ытларах чун тĕрекĕ çинче никĕсленнĕ, çирĕпленнĕ.

*Çут тăванлăхăм! Пар аллуна*
*Сан патна савăнса таврăнан ывăлна.*
*Ĕмĕтсен илемне, шухăшсен тупсăмне*
*Вăл санра çеç шырать, ыр çĕршывăм-анне!*

(Митта Ваçлейĕ).

Чăваш наци конгресĕ те юлашки вунă çулта çак чăваш тĕнчине анлăлатма, çирĕплетме, хăйсене майлă çаварма пултарнă. Чăваш хура халăхĕ (чи вăйлă пĕлтерĕшпе!) çак тĕнчере пурăнать. Историн тĕрлĕ пăтăрмахĕсем витĕр тухса чăваш пĕрлĕхĕ патне çитнĕ, вăл халĕ те чĕрĕ, сывă.

Çапах та чăваш тĕнчи пысăках мар. Ăна тĕрлĕ енчен самана çавра çилĕсем ярса илеççĕ, аслă тĕнчен шăв-шавĕ чăваш сассине хупласшăн. Пĕтĕм тĕнчипе информаци пусăмĕ ÿснĕ, чăваш чĕлхин малашлăхĕ хăрушлăх умĕнче тăнă май, пирĕн те, паянхи чăвашсен, хамăр Сăмаха, Сăнара тата Юрра тĕнче умне кăлармалла. Чăвашăн сăнĕ вĕсенче упранать, пире тĕнчере çак пахалăхсемпе виçĕç.

*Чăвашлăхăн иккĕмĕш* юпи вара çакă: *тĕнче шайĕнче шухăшласси*. Глобализаци вăхăтĕнче урăхла пулма пултараймасть. «Ял» шайĕнчи шухăшлав кивĕ ĕмĕртех юлмалла, пĕрлĕхлĕ наци идеологине асра тытса малалла талпăнар!

Чăваш халăхĕ лăпкă, тарăн шухăшлакан халăх. Хăйĕн тăшманĕсене вăл паянхи кун лайăх палласа та илеймест, хĕç-пăшал тытса вĕсене хирĕç çапăçма та тухаймасть пулĕ. Çичĕ юта çĕнтермелли пĕртен пĕр меслет: анлă тавра курăм, тарăн ăс, çирĕп пĕлÿ. Эппин, *виççĕмĕшĕнчен – çĕнĕ ĕмĕрти çĕн чăвашăн ăс-хакăлпа çĕнтермелле.*

*Тăваттăмĕш юпа* вара хальхи хутăш социализм-капитализм патшалăх тытăмĕнче питĕ пĕлтерĕшлĕ. Вăл – *пурлăх никĕсĕ.* Уйрăм çын харпăрлăхĕ пур, унта атте-анне пиллесе хăварнă, вăл хăй пухнă пурлăх пуçтарăнать. Çак пурлăха çын хăйĕн ачисене хăварать. Çавăн пекех пĕтĕм чăваш халăхĕн хăйĕн харпăрлăхĕ пулмалла, наци мулĕ (капиталĕ) текенни. Ку енĕпе пирĕн лару-тăру çăмăлах мар. Республика харпăрлăхĕ эпир пĕлмен çичĕ ют аллине сутăнать, чăвашăн «ĕçлĕ» çыннисем хальлĕхе наци туйăмĕ çине таянса наци пурлăхне ÿстерме, унта хăйсен тÿпине хывма васкамаççĕ. Вĕсене ăнланма та пулать тепĕр енчен, хамăр тÿре-шара та çак шухăша асра тытмасть.

Чăвашăн çак никĕсĕсем пирки шухăшлама хистетĕп сире, ырă çыннăмăрсем, хаклă тăванăмăрсем! Сĕм авалтăхра, аркану тапхăрĕсенче, хальхи сĕмленÿ вăхăтĕнче те мăнтарăн чăваш хăйĕн ятне çĕртмен, чĕлхине, йăли-йĕркине, чăваш тĕнчине хÿтĕлесе хăварма пултарнă. Çĕнĕ ĕмĕр хапхи уçăлнă чух чăваш хăйĕн ячĕпех кĕрессе эпир хытă шанатпăр. Çĕнĕрен çуралнă наци пулĕ. Ытла та ырă кăмăллă халăх эпир, çак çĕр çинчен ун пек таса халăх çухалма пултараймасть.

*Çук, чăваш ятне çĕртмерĕ*
*Ывăлу-хĕрÿ, çĕршывăм!*
*Ÿкермерĕ санăн аслă*

*Пехилне хура ҫĕре.*
*Ахаль мар эс ҫитĕнтертĕн*
*Танлăн, тӳсĕмлĕн те сыввăн,*
*Чăнкă Атăл хумĕ ҫийĕн*
*Чăпăлкка туса пире.*
*(………………………………)*
*Пурăнах, чăваш уй-хирĕ,*
*Сĕм вăрманĕ, ешĕл илĕ,*
*Йăлăм-улăхĕ, шыв-шурĕ –*
*Чăвашла пĕчĕк тĕнче!*

(Петĕр Хусанкай)

Ирĕклĕн аталанса ĕмĕр-ĕмĕр пурăнтăр халăхăмăр! Ҫапла пултăр!

Атнер ХУСАНКАЙ, ЧНК хисеплĕ президенчĕ.
*«Хыпар», 15.10.2002, 188№.*

## «ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔ» ОБЩЕСТВО ПĔРЛЕШĔВĔСЕН ТĔНЧЕРИ СОЮЗĔН УСТАВĔ

### 1. Пĕтĕмĕшле положенисем

**1.1.** «Чăваш наци конгресĕ» общество пĕрлешĕвĕсен тĕнчери союзĕ (малалла Конгресс) общество пĕрлешĕвĕсен союзĕ шутланать. Вăл Раҫҫей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин вăйра тăракан саккунĕсемпе килĕшӳллĕн йĕркеленнĕ тата пĕрлешнĕ ҫынсен пĕрлехи интересĕсене хӳтĕлеме тата Уставри тĕллевсене пурнăҫа кĕртме хăйĕн ĕҫ-хĕлне пурнăҫлать.

**1.2.** Хăйĕн ĕҫ-хĕлĕнче Конгресс Раҫҫей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин конституцийĕсене, РФ тата ЧР вăйра тăракан саккунĕсене, ҫак Устава тата тĕнче правин нормисене тĕпе хурать, ҫавăн пекех демократи, уҫҫăнлăх, пĕр тан правалăх, хăй тытăмлăх тата саккунлăх принципĕсем ҫинче никĕсленет.

**1.3.** Конгресс хăйĕн ĕҫ-хĕлне Раҫҫей Федерацийĕн тата унăн субъекчĕсен, ҫавăн пекех Конгресс членĕсем шутланакан общество пĕрлешĕвĕсен ытти патшалăхсенчи территорийĕсенче пурнăҫлать.

**1.4.** Патшалăх регистрацине тунă самантран Конгресс юридици сăпачĕ шутланать, хăйсене уйрăм пурлăхпа хуҫаланать, Раҫҫей Федерацийĕнчи, чикĕ леш енчи банк учрежденийĕсенче расчет счечĕсем уҫма, хăйĕн ячĕпе пурлăх тата пурлăх шутне кĕмен правасемлĕ пулма, тивĕҫсем илме, судра тавăҫ тăратакан тата яваплăх тытакан пулма пултарать.

**1.5.** Конгресăн хăйĕн ҫавра пичечĕ, ялавĕ, вымпелĕ, эмблеми тата саккун йĕркипе ҫирĕплетнĕ ытти символики пур.

**1.6.** Конгресăн вырăсла тулли ячĕ – Международный союз общественных объединений «Чувашский национальный Конгресс».

**1.7.** Конгресăн ертсе пыракан органĕсен адресĕ: Чăваш Республики, Шупашкар хули, Воробьев композиторсен урамĕ, 10-мĕш ҫурт.

### 2. Тĕп тĕллевсем. Конгресс ĕҫĕ-хĕлĕ тата задачисем

**2.1**. Конгресăн тĕп тĕллевĕсем ҫаксем шутланаҫҫĕ:

– чăваш халăхне, унăн общество (тата культурăпа ҫут ĕҫ) пĕрлешĕвĕсене пĕтĕҫтересси;

– Чăваш Енĕн социаллă пурнăҫпа экономика, наци культура, политикăпа кăмăлсипет аталанăвне пулăшасси;

– чăвашсем йышлă пурăнакан регионсенче наци культура автономийĕсен программисене тата вĕсене пурнăҫламалли механизмсене хатĕрлес ĕҫе хутшăнасси;

**2.2.** Тĕпчев ĕҫĕпе ҫураҫтару ĕҫне хутшăнасси, тĕнчери гуманитари организацийĕсемпе ҫыхăну тытасси.

Тĕп тĕллевсемпе задачăсене пурнăҫланă чухне ЧНК патшалăх органĕсемпе, культурăпа ҫут ĕҫ учрежденийĕсемпе, наци культура пĕрлешĕвĕсемпе, ассоциацисемпе, политика партийĕсемпе тата юхăмсемпе, тĕн организацийĕсемпе, ҫавăн пекех уйрăм граждансемпе хутшăнса ĕҫлет.

**2.3.** Конгресс ĕҫĕ-хĕлĕн никĕсре тăракан принципĕсем:

– чăваш халăхĕпе ытти халăхсен хăй тĕллĕнлĕх прависене йышăнасси, наци чĕлхине, культурине, йăли-йĕркине упраса хăварасси;

– наци пĕрлĕхĕ идеологи тата класс ĕненĕвĕсенчен приоритетлăрах пулнине йышăнасси;

– Чăваш Республикин тата чăвашсем пурăнакан ытти ҫĕр-шывсен саккунĕсене, тĕнче правине тата тĕнче килĕшĕвĕсене пăхăнасси тата йышăнасси;

– наципе политикăн ҫивĕч ыйтăвĕсене цивилизаци, демократи ҫул-йĕрĕпе татса парасси.

**2.4.** Хăйĕн умне лартнă тĕллевсене пурнăҫа кĕртме Конгресс ҫак задачăсене пурнăҫлать:

– Чăваш Республикин социаллă пурнăҫпа экономика, наци культура аталанăвне пур енлĕн пулăшасси;

– демократи принципĕсене, тĕнче правин нормисене тата чăвашсем пурăнакан ҫĕр-шывсен саккунĕсене тĕпе хурса чăвашсен этнорегион ыйтăвĕсене татса парас ĕҫе хутшăнасси;

– наци культура аталанăвĕн – чĕлхе, наука, вĕрентӳ, культура, истори еткерлĕхĕ, халăх педагогики, демографи т.ыт.те – тĕллевлĕ программисене хатĕрлесси тата пурнăҫлама пулăшасси;

– аналитика, тĕпчевпе эксперт пĕтĕмлетĕвĕсене, патшалăхпа общество организацийĕсем кулленхи ĕҫре усă курма тивĕҫлĕ сĕнӳсене, саккун проекчĕсемпе патшалăхсен хушшинчи килĕшӳсене хатĕрлеме тата пурнăҫлама хутшăнасси;

– республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсемпе (диаспорăпа), тĕнчери правительствăсен мар организацисемпе алла-аллăн, пĕр-пĕрне ăнланса ĕҫлесси.

**2.5.** Конгресăн тĕп ĕҫĕ-хĕлĕ:

– Чăваш Республикинче тата ытти регионсенче пурăнакан чăвашсен социаллă пурнăҫĕпе культури, право тĕлĕшĕнчи ĕҫ-пулăмĕ ҫинчен информаци пухасси тата тĕпчесси;

– тĕрлĕ ҫĕрте пурăнакан чăвашсен этнорегион тĕлĕшĕнчи ҫивĕч ыйтăвĕсене практикăра татса парасси. Наци культура аталанăвĕн ыйтăвĕсемпе ĕҫлекен патшалăх, общество, культурăпа ҫут ĕҫ тата наука тĕпчев организацийĕсемпе, массăллă информаци хатĕрĕсемпе, халăхсен хушшинчи гуманитари организацийĕсемпе хутшăнса ĕҫлесси;

– общество организацийĕсемпе ытти тĕрлĕ организацисем валли ĕҫлĕ сĕнӳсем хатĕрлесси, ҫавăн пекех саккунсемпе тĕрлĕ килĕшӳсен проекчĕсене хатĕрлеме хутшăнасси;

– Чăваш Енпе чăваш халăхĕ ҫинчен информаци пухасси тата сарасси, хаҫат-журнал, аудио-видео продукцине кăларасси, чăвашсем пурăнакан регионсенчи массăллă информаци хатĕрĕсемпе ҫыхăнса ĕҫлесси;

– Конгресăн вырăнти организацийĕсен ĕҫĕ-хĕлĕн опытне пĕтĕмлетесси, вĕсене пропагандăласси.

### 3. Конгресс прависемпе тивĕҫĕсем

**3.1.** Хăйĕн ĕҫĕ-хĕлне йĕркелесе пымашкăн тата тĕллевĕсемпе задачисене пурнăҫламашкăн Конгресăн саккунпа ҫирĕплетнĕ йĕркепе ҫакна тума ирĕк пур:

– Раҫҫей территорийĕнче те, чикĕ леш енче те уйрăм ҫынсемпе тата юридици сăпачĕсемпе саккуна тата ҫак Устава хирĕҫлемен тĕрлĕ килĕшӳсемпе юридици акчĕсем йышăнма;

– ҫурт-йĕр лартма, хатĕр-хĕтĕр, транспорт, инвентарь, чĕр тавар, куҫакан е куҫман пурлăх туянма, сутма, ҫавăн пекех балансран хăйĕн пурлăхне, енчен те вăл пăрахăҫа тухнă е мораль тĕлĕшĕнчен кивелнĕ пулсан, шутран кăларма;

– ăслăлăх, культура-ҫут ĕҫ организацийĕсемпе, вĕрентӳ заведенийĕсемпе, предприятисемпе, общество пĕрлешĕвĕсемпе, ытти организацисемпе тĕнчери тӳрĕ ҫыхăнусем йĕркелеме, тивĕҫлĕ килĕшӳсем тума, халăхсен хушшинчи симпозиумсен, конференцисен тата куравсен ĕҫне хутшăнма;

– хăйĕн ĕҫ-хĕлĕн программисемпе планĕсене хăй тĕллĕн хатĕрлеме тата ҫирĕплетме.

### 4. Конгресри членлăх. Унăн членĕсен прависемпе тивĕҫĕсем

**4.1.** ЧНК членĕсем юридици сăпачĕсем – граждансен общество пĕрлешĕвĕсем, ҫавăн пекех уйрăм ҫынсем – кирек хăш нацирен тата гражданлăхра тăракансем – пулма пултараҫҫĕ. Вĕсен Конгресс тĕллевĕсемпе задачисене ырламалла, вĕсене татса пама вăй ҫитнĕ таран тӳпе хывмалла, ҫак Устава пăхăнмалла. Конгреса йышăнас ыйтăва унăн Мăн Канашĕ татса парать.

**4.2.** Конгресс членĕсен ҫакнашкал правасем пур:

– Конгресăн суйланакан органĕсене йĕркелемешкĕн хутшăнма, яланхи ĕҫ органĕсенче ĕҫлеме;

– Конгресс членĕсен хушшинче кăна саракан хăть те мĕнле информацие илме тата унпа усă курма;

– Конгресăн ертсе пыракан органĕсем ырланă шухăшсемпе проектсене пурнăҫламашкăн методикăпа йĕркелӳ пулăшăвĕ илме;

– Конгресăн планĕсемпе мероприятийĕсем пирки информаци пĕлтерĕвĕ илме;

– Конгресăн ертсе пыракан органĕсенчен тата унăн подразделенийĕсенчен консультацисем, экспертизăсем, пĕтĕмлетӳсемпе сĕнӳсем илме, Конгресс кăларăмĕсенче пичетленме;

– хăйĕн ĕҫне-хĕлне сарас тата лайăхлатас шутпа Конгресс пулăшăвĕпе, майĕсемпе усă курма;

– Конгресăн ертсе пыракан органĕсем хушнипе тĕнчери организацисенче, общество, политика организацийĕсенче, ытти тытăмсенче унăн полномочиллĕ элчисем пулма.

**4.3.** Конгресс членĕсем ҫапла тума тивĕҫлĕ:

– Конгресс Уставне пăхăнма;

– Конгресс ыйтӑвӗсене татса памашкӑн тата тӗллевӗсене пурнӑҫа кӗртмешкӗн активлӑ хутшӑнма;

– Конгресс Уставӗн анлӑшӗнче пӗр-пӗринпе хутшӑнса ӗҫлессине аталантарма;

– Конгресӑн йӗркелӳпе предпринимателлӗх ӗҫне укҫа-тенкӗпе тивӗҫтермешкӗн хутшӑнма.

**4.4.** Конгресс йышӗнчен Конгресс членӗ ыйтса ҫырнине тӗпе хурса Мӑн Канаш йышӑнӑвӗпе кӑлараҫҫӗ.

Конгресс членӗ Устава пӑхӑнмасан, Конгресӑн тӗллевӗсене тата задачисене хирӗҫле ӗҫсем тусан ӑна членран кӑлараҫҫӗ. Членран кӑларассине Мӑн Канаш ларӑвӗнче йышӑнаҫҫӗ.

## 5. Конгресс тытӑмӗ

**5.1.** Конгресс йышне общество пӗрлешӗвӗсем – юридици вӑйӗнче тӑракансем кӗреҫҫӗ, вӗсем хӑйсен уставӗсемпе, ҫавӑн пекех Конгресс Уставӗпе килӗшӳллӗн ӗҫлеҫҫӗ.

**5.2.** Общество пӗрлешӗвӗсем – Конгресс членӗсем хӑй тӗллӗнлӗхне тата юридици вӑйӗнче тӑракансен прависене сыхласа хӑвараҫҫӗ.

**5.3.** Конгресс Раҫҫей Федерацийӗнче те, ют ҫӗр-шывсенче те филиалсем тума тата элчӗлӗхсем (представительствӑсем) уҫма пултарать.

**5.4.** Конгресс филиалӗсем тата элчӗлӗхӗсем юридици вӑйӗнче тӑмаҫҫӗ, вӗсене Мӑн Канаш йышӑнӑвӗпе туса хураҫҫӗ, вӗсем Мӑн Канаш ҫирӗплетнӗ положенисене тӗпе хурса ӗҫлеҫҫӗ.

Филиалсене тата элчӗлӗхсене ертсе пыракансене Мӑн Канаш уйӑрса лартать, вӗсем Конгресс паракан шантару хутне тӗпе хурса ӗҫлеҫҫӗ.

**5.5.** Филиалсем тата элчӗлӗхсем хӑйсен ӗҫне-хӗлне Конгресс ячӗпе туса пыраҫҫӗ.

**5.6.** Хӑйӗн укҫа-тенкӗпе тата пурлӑхпа ҫыхӑннӑ ыйтӑвӗсене татса памашкӑн Конгресс ЧНК Фондне туса хума пултарать.

## 6. Конгресӑн ертсе пыракан органӗсем

**6.1.** Конгресӑн аслӑ органӗ – Аслӑ пуху, ӑна 4 ҫулта пӗр хутран кая мар пуҫтараҫҫӗ. Черетсӗр Аслӑ пухӑва Мӑн Канаш йышӑнӑвӗпе е Конгресс членӗсен йышӗн ҫурринчен ытла ыйтнипе пухаҫҫӗ.

**6.2**. Аслӑ пуху Конгресс ӗҫӗ-хӗлӗпе ҫыхӑннӑ кирек мӗнле ыйтӑва та татса пама пултарать. Аслӑ пуху кӑна татса пама пултаракан ыйтусен шутне ҫаксем кӗреҫҫӗ:

– Конгресс Уставне йышӑнасси, унта улшӑнусемпе хушӑмсем кӗртесси;

– Конгресс ӗҫӗ-хӗлӗн тӗп ҫул-йӗрӗсене палӑртасси;

– 4 ҫуллӑха Конгресӑн Мӑн Канашне тата Тӗрӗслев-ревизи комиссине суйласси;

– пурлӑха йӗркелессипе тата унпа усӑ курассипе ҫыхӑннӑ принципсене палӑртасси;

– Конгресс тытӑмне улӑштарассипе е ӑна пӗтерессипе ҫыхӑннӑ ыйтӑва татса парасси.

Аслӑ пуху унта пухӑннӑ делегатсен ытларахӑшӗ уҫҫӑн е вӑрттӑн сасӑланипе йышӑнусем кӑларать. Съезд Аслӑ пуху суйланӑ делегатсен ҫурринчен ытларах хутшӑннӑ пулсан саккунлӑ шутланать.

**6.3.** Аслӑ пухусен хушшинчи тапхӑрта Конгреса Мӑн Канаш ертсе пырать, ӑна Аслӑ пуху полномочи парса 4 ҫуллӑха суйлать. Мӑн Канаш татса памалли ыйтусене унӑн ларӑвӗнче пӑхса тухаҫҫӗ тата йышӑнаҫҫӗ. Ларусене ҫулталӑкра пӗр хутран кая мар ирттереҫҫӗ.

Мӑн Канаш ларӑвӗ унӑн членӗсен ҫурри ытла хутшӑнсан саккунлӑ шутланать. Йышӑнусене Мӑн Канаш членӗсен ытларахӑшӗ уҫҫӑн е вӑрттӑн сасӑласа йышӑнаҫҫӗ.

Мӑн Канаш Конгресӑн ялан ӗҫлекен ертсе пыракан органӗ шутланать тата ун ячӗпе юридици вӑйӗнче тӑракан правасене пурнӑҫлать.

Мӑн Канаш ҫак ӗҫсене тума пултарать:
– Конгреса ҫӗнӗ членсем илессипе тата Конгресран кӑларассипе ҫыхӑннӑ ыйтусене татса пама;

– Аслӑ пуху йышӑнӑвӗсене пурнӑҫа кӗртмелли программӑсем туса хатӗрлеме;

– Конгресс членӗсен ӗҫне-хӗлне йӗркелесе пыма;

– ЧНК Аслӑ пухӑвне ирттермелли вӑхӑта, унӑн делегачӗсен йышне, ӑна хатӗрленессине тата ирттерессине палӑртма;

– чӑвашсем йышлӑ пурӑнакан регионсенче патшалӑх органӗсемпе ҫыхӑнса ӗҫлеме;

– тӗнчери гуманитари организацийӗсемпе ҫыхӑну йӗркелеме;

– чӑваш наци культурине тата вӗрентӳ ӗҫне сыхласа хӑварас тата аталантарас тӗлӗшпе хатӗрленӗ тӗнчери программӑсене хутшӑнма.

**6.4.** Мӑн Канаш ларӑвӗсен хушшинче Конгресс ӗҫӗ-хӗлне Президиум ертсе пырать, ӑна Мӑн Канаш хӑйӗн йышӗнчен хӑйӗн полномочийӗн тапхӑрне суйласа хӑварать. Президиум ларӑвӗсене уйӑхра пӗр хутран кая мар ирттереҫҫӗ. Президиум 15 ҫынран тӑрать, ҫав шутра – вице-президентсем тата ЧНК Фончӗн ертӳҫи.

Мӑн Канаш Президиумӗ ҫак ӗҫсене тума пултарать:

– Аслӑ пуху тата Мӑн Канаш йышӑнӑвӗсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе мероприятисен планне туса хатӗрлеме;

– Чӑваш наци конгресне кӗрекен общество тата культура центрӗсене йӗркелӳ тата меслет тӗлӗшпе пулӑшма;

– Чӑваш наци конгресӗн Мӑн Канашне пулӑшакан эксперт ушкӑнӗсемпе комиссисем туса хума тата вӗсене ертсе пыма;

– ЧНК Мӑн Канашне килекен сӗнӳсемпе асӑрхаттарусене пӗтӗмлетсе тишкерме тата вӗсене пӑхса тухма;

– чӑвашсем йышлӑн пурӑнакан регионсенче ЧНК Мӑн Канашӗн ларӑвӗсене йӗркелесе ирттерме.

Мӑн Канаш Ваттисен канашӗпе Ҫамрӑксен канашӗн йышне ҫирӗплетет.

**6.5.** Мӑн Канаш ертӳҫине – Конгресс президентне Аслӑ пухура делегатсен ытларах йышӗ 4 ҫуллӑха суйлать. Конгресс президенчӗ пӗр вӑхӑтрах Президиум председателӗ те шутланать.

Президент Мӑн Канашӑн, унӑн Президиумӗн ларӑвӗсене ирттерет, вице-президентсен, эксперт ушкӑнӗсен, комиссисемпе канашсен ертӳҫисен ӗҫне-хӗлне йӗркелесе пырать, патшалӑх органӗсемпе общество пӗрлешӗвӗсенче, тӗнче шайӗнчи тытӑмсенче ЧНК тата унӑн Мӑн Канашӗн элчин тивӗҫӗсене пурнӑҫлать. ЧНК президенчӗ ҫавӑн пекех чӑвашсем йышлӑн пурӑнакан регионсенче хӑйӗн полномочиллӗ элчисене (представителӗсене) ҫирӗплетет.

Президент ҫук чухне Президиум йышӑннӑ тӑрӑх унӑн тивӗҫӗсене президент сӗнӗвӗпе килӗшӳллӗн Мӑн Канаш 4 ҫуллӑха суйлакан вице-президентсенчен пӗри пурнӑҫлать.

Президент сӗннипе Президиум ӗҫтӑвком йышне тата унӑн Положенине ҫирӗплетет.

**6.6.** Тӗпчевсемпе ытти ӗҫсене тӗрӗс тата тулли пурнӑҫлас тӗллевпе Мӑн Канаш хӑйӗн тытӑмӗнче эксперт ушкӑнӗсем, комиссисемпе канашсем йӗркелет.

Эксперт ушкӑнӗсене тата вӗсен ертӳҫисем кӗрекен эксперт канашӗсене Мӑн Канаш ӗҫ-хӗлне информаципе аналитика енчен тивӗҫтерес тӗллевпе йӗркелеҫҫӗ, вӗсемех Мӑн Канаш йышӑнӑвӗсене пурнӑҫлаҫҫӗ.

Эксперт ушкӑнӗсен, комиссисемпе канашсен ӗҫ-хӗлне Мӑн Канаш Президиумӗ ҫирӗплетнӗ положенисемпе килӗшӳллӗн йӗркелеҫҫӗ.

**6.7.** Мӑн Канашӑн финанс ӗҫ-хӗлне ЧНК Аслӑ пухӑвӗ 4 ҫуллӑха ҫирӗплетекен Тӗрӗслев-ревизи комиссийӗ тӗрӗслесе тӑрать. Тӗрӗслев-ревизи комиссийӗ Аслӑ пуху ҫирӗплетекен Положенипе килӗшӳллӗн ӗҫлет.

**6.8.** Тӗрӗслев-ревизи комиссийӗ Конгресс хӑйӗн ӗҫ-хӗлне Уставри тӗллевсемпе тата задачӑсемпе килӗшӳллӗн пурнӑҫланине тишкерет, укҫа-тенке тӗрӗс тата тӗллевлӗ усӑ курнине тӗрӗслет, учетпа отчет тытӑмне йӗркелет. Ревизи пӗтӗмлетӗвӗсемпе Аслӑ пухӑва паллаштарать.

**6.9.** Тӗрӗслев-ревизи комиссийӗ должноҫри яваплӑ ҫынсенчен кирлӗ материалсем, бухгалтери докуменчӗсемпе ытти документ ыйтса илме, планпа палӑртман ревизисемпе тӗрӗслевсем ирттерме пултарать.

**6.10.** Тӗрӗслев-ревизи комиссийӗн йышӗнче Конгреса ертсе пыракан органсен ертӳҫисем пулма пултараймаҫҫӗ.

## 7. Конгресӑн укҫи-тенки тата пурлӑхӗ

**7.1.** Чӑваш наци конгресӗн укҫи-тенки ҫапла йӗркеленет:

– нацие культурӑна аталантарас енӗпе йышӑннӑ социаллӑ пӗлтерӗшлӗ программӑсене пурнӑҫлама патшалӑх уйӑракан субсидисенчен;

– Конгресс йӗркеленӗ хуҫалӑх организацийӗсен тупӑшӗнчен пырса кӗнинчен;

– саккун йӗркипе ҫирӗплетнӗ издательство ӗҫӗ-хӗлӗнчен пырса кӗнинчен;

– граждансем, предприятисем, организацисем, учреждениcем, общество организацийӗсем пулӑшнинчен;

– урӑхла майпа пырса кӗнинчен.

**7.2.** Конгресс харпӑрлӑхӗ шутӗнче ҫурт-йӗр, производство, социаллӑ, ыр кӑмӑллӑх, культурӑпа ҫут ӗҫ пӗлтерӗшлӗ объектсем, ҫавӑн пекех Устав тӗллевӗсене пурнӑҫлама кирлӗ урӑх пурлӑх пулма пултарать.

**7.3.** Конгресс хӑй тӗллӗн ӗҫлекен юлташлӑхсем, пӗрлешӳсем тата ытти хуҫалӑх организацийӗсем йӗркелеме, ҫавӑн пекех Устав тӗллевӗсене пурнӑҫлама кирлӗ предприниматель ӗҫ-хӗлне тытса пымалли пурлӑх туянма пултарать.

**7.4.** Предпринимателлӗхрен илнӗ тупӑш Конгресс членӗсен хушшинче валеҫӗнме пултараймасть, вӑл Устав тӗллевӗсемпе задачисене пурнӑҫлама каять.

**7.5.** Конгресс пурлӑхне унӑн ялан ӗҫлекен ертсе пыракан органӗ – Конгресӑн Мӑн Канашӗ тытса пырать.

**7.6.** Пурлӑх хуҫи пӗр пӗтӗмӗшле Конгресс пулса тӑрать. Конгресс членӗсем Конгресс пурлӑхӗн пайӗ тӗлӗшпе харпӑрлӑх правипе усӑ курмаҫҫӗ, Конгресӑн хӑйӗн членӗсен пурлӑхӗ тӗлӗшпе харпӑрлӑх прави ҫук.

**7.7.** Конгресс хӑйӗн харпӑрлӑхӗпе е пурлӑхӗпе Раççей Федерацийӗн саккунӗсене тата çак Устава хирӗçлемен кирек епле килӗшӳ тума пултарать.

**7.8.** Раççей Федерацийӗн саккунӗсемпе килӗшӳллӗн взыскани хунӑ мӗн пур сӑлтав тӑрӑх Конгресс хӑйӗн пӗтӗм пурлӑхӗпе явап тытать.

### 8. Конгреса реорганизацилемелли тата пӗтермелли йӗрке

**8.1**. Конгреса реорганизацилесси тата пӗтересси РФ Граждан кодексӗпе палӑртнӑ йӗркепе пулса пырать.

**8.2.** Конгреса ЧНК Аслӑ пухӑвӗнче делегатсен 2/3 пайӗн сасӑлавӗпе йышӑннӑ пулсан е РФ вӑйра тӑракан саккунӗсемпе килӗшӳллӗн суд йышӑнӑвӗпе реорганизацилеме е пӗтерме пултараççӗ.

**8.3.** Конгреса пӗтернӗ хыççӑн юлнӑ пурлӑх Уставпа палӑртнӑ тӗллевсене пурнӑçлама каять.

**8.4.** Конгреса пӗтерес пирки тунӑ йышӑнӑва патшалӑхӑн юридици вӑйӗнче тӑракансен пӗрлехи реестрӗнчен кӑларма РФ Юстици министерствине ярса параççӗ.

**8.5**. Конгресс хӑйӗн ӗç-хӗлӗпе тата хӑйӗн йышӗпе çыхӑннӑ документсене упрать, пӗтерес пулсан вӗсене патшалӑх архивӗн органӗсене упрама саккунпа çирӗплетнӗ йӗркепе куçарать.

26.09.2002.

## ЧӐВАШ ПАТШАЛӐХӖН ТИВӖÇӖ – ТӐВАН ЧӖЛХЕ ХӐРХӐМ ЧӖЛХЕ АН ПУЛТӐР

### «Чӑваш Республикин чӗлхесем çинчен» саккун проектне сӳтсе явнӑ май

*«Чӑваш Республики – чӑваш халӑхӗн пӗртен пӗр наци патшалӑх пӗрлешӗвӗ. Чӑваш чӗлхине наци чи пысӑк пӗлтерӗшлӗ палли тата унӑн пӗтӗм ӑс-хакӑл культурин никӗсӗ вырӑнне хурса сыхласа хӑварассишӗн, çӗнӗрен чӗрӗлтерсе аталантарассишӗн тӑрӑшасси – Чӑваш патшалӑхӗн тивӗçӗ».*

Çак йӗркесем — 1990 çулхи юпан 27-мӗшӗсенче йышӑннӑ «Чӑваш Республикин чӗлхесем çинчен» саккунран. Нихçан кивелми чӑн сӑмахсем вӗсем. Анчах та пирӗн саманара вунӑ çул каялла выçӑ тытса çӗнсе илме пултарнӑ çак Чӑн сӑмах та кивелме (?!) пултарать тесе шухӑшлама хӑякансем те пур иккен пирӗн республикӑра. ЧР Патшалӑх Канашӗн аппарачӗн юристсен ушкӑнӗ (хушамачӗсене пӗлтермерӗç) «Чӑваш Республикин чӗлхесем çинчен» саккунӑн çӗнӗ проектне хатӗрленӗ. Çак проекта ЧР Патшалӑх Канашӗ 2003 çулхи çу уйӑхӗн 20-мӗшӗсенче пӗрремӗш вулавпа ырланӑ. Иккӗмӗш вулавпа йышӑнас умӗн ӑна сӳтсе явма, тӳрлетме май пултӑр тесе проекта «Республика» хаçатӑн кӑçалхи çӗртмен 4-мӗшӗнчи номерӗнче вырӑсла пичетлесе кӑларнӑ. Чӑваш патшалӑхӗн çӳлерех илсе кӑтартнӑ тивӗçӗ пирки пӗр сӑмах та çук унта. Чи кирли – «Чӑваш Республикин чӗлхесем çинчен» саккун РФ Конституцийӗ тата «Раççей Федерацийӗнчи халӑхсен чӗлхисем çинчен» саккунпа килӗшсе тӑмалла тата ӑна хирӗçлемелле мар иккен.

*Çӗнӗ проекта ЧР Патшалӑх Канашӗн Культура, вӗрентӳ, ӑслӑлӑх тата наци политикин комитетӗнче сӳтсе явнӑ чух ЧНК ертӳçи* ***Г.Н.Архипов*** чӑваш халӑхӗшӗн пурнӑç пӗлтерӗшлӗ чи кирлӗ саккунне ку хутӗнче юристсем кӑна хатӗрленине шута илсех-тӗр: «Çичӗ юристӑн çичӗ шухӑш», – тесе каларӗ. Мӗншӗн-ха паллӑ чӗлхеçӗсене, халь ӗçлекен саккуна хатӗрленӗ çынсене явӑçтарман çӗнӗ проекта кӑлӑпланӑ чух? Çак ыйтӑва ЧР Патшалӑх Канашӗн Культура, вӗрентӳ, ӑслӑлӑх тата наци политикин комитечӗн ертӳçи **Е.Д. Сергеева** çапла хуравларӗ: «Эпир сире саккунӑн никӗсне («канвине») кӑна сӗнетпӗр, вӑл мӗнлерех пулмаллине пӗрле сӳтсе явар...» Енчен те никӗсӗ килӗшмест пулсан мӗн тумалла? Унта кашни сӑмахрах РФ Конституцине «плана ирттерсе» юрас тенӗ пулсан? ЧР Профессионал писательсен союзӗн ертӳçи **Валери Туркай** хӗрӳленсех кайрӗ: «Мускавра çӳç касаççӗ тӗк Шупашкарта пуç касаççӗ. Чӑваш чӗлхинчен ку тарана çитсе çапла мӑшкӑлланине курманччӗ-ха...» Нумаях пулмасть 75 çул тултарнӑ паллӑ чӗлхеçӗ **Иван Андреевич Андреев** профессор та хӑйӗн шухӑш-кӑмӑлне пытармарӗ: «Çак саккун проекчӗ манӑн наци туйӑмне кӳрентерет».

Темиçе те вуласа тухрӑм çӗнӗ проекта: пӗр статьян пӗр пунктӗнче те, тӗслӗхрен, чӑваш чӗлхине хӳтӗлемелли çинчен е республика тулашӗнче пурӑнакан чӑвашсене те пулӑшмалли çинчен асӑннине асӑрхамарӑм. 1990 çулта йышӑннӑ саккунра вара «Чӑваш Республики тулашӗнче пурӑнакан чӑваш наци йӑли-йӗркипе культурине аталантарма пулӑшасси» VI пай пур. «Пурччӗ» тесе ятарласа çырмастӑп, мӗншӗн тесен çак саккун хальлӗхе вӑйрах-ха. Ӑна мӗншӗн пӑрахӑçласшӑн пулнине эпӗ ниепле те ӑнланса çитерейместӗп. Тен, унти нумай-нумай статьяна халӗ те пурнӑçа кӗртменни е кӗртесшӗн пулманни хӗтӗртет çапла тума? IV мӗш пайри 23-мӗш статьяри пӗр предложение çеç аса илтерер: «Чӑваш Республикин радиовещанипе телевиденире чӑвашла программӑсем валли каналсем туса хурать, çак программӑсене Чӑваш Республикин территорийӗнче итлеме тата курма майсем туса парать». Çӗнӗ проектра çакӑн пирки пӗр сӑмах та каламан. Тӗслӗхрен, IV пайри 16-мӗш статьяна пӗр улӑштармасӑр вырӑсла илсе кӑтартатпӑр (çӗнӗ саккун халь-халь вӑя кӗрессине систерсе-ши – проекта Чӑваш Республикин патшалӑх чӗлхисенчен теприне – чӑвашла – хатӗрлеме кӑмӑл туман): «В сферах промышленности, агропромышленного комплекса, связи, транспорта и энергетики на всей территории Чувашской Республики применяется русский язык как государственный язык Российской Федерации. На местном уровне наряду с русским языком могут употребляться чувашский или иные языки с учетом интересов местного населения».

Тӗлӗнсе каймалла мар-и-ха: мана тӑван çӗр-шывра, Чӑваш Республикинче, хамӑн тӑван чӗлхепе чӑвашла калаçма ирӗк параççӗ иккен! Ирӗк пани хӑех ирӗк памасан та пултаратӑп тениех мар-и-ха?! Чӑваш чӗлхи çинчен асӑннӑ чух çӗнӗ проектра çине-çинех «могут», «может» евӗрлӗ сӑмахсем тӗл пулаççӗ. Пире сӗнекен çӗнӗ саккунпа паллашнӑ май ирӗксӗрех Чӑваш халӑх писателӗ Хветӗр Уяр каланӑ сӑмахсем аса килеççӗ: «Ма пӗр-пӗр чӗлхене çеç хуçа чӗлхе, приказ парса ларакан чӗлхе вырӑнне хумалла, ытти чӗлхесем вара тарçӑ чӗлхесем, хӑрхӑм чӗлхесем, чура чӗлхесем кӑна-и?» Çак йӗркесене «Шурча таврашӗнче» романӑн иккӗмӗш кӗнекинче, 370-мӗш страницӑра вулама пулать. XIX ӗмӗр варринчи чӑвашсен пӑлхавӗ çинчен çырнӑ кӗнекери йӗркесене XXI ӗмӗрти чӑваш шӑпи çинчен çырнӑ чух аса илмелле ан пултӑр тесен, ман шутпа, çӗнӗ проекта тӗпрен улӑштармалла. Унсӑрӑн... Унсӑрӑн эпир хамӑрӑн юлашки мӑнаçлӑха та çухатӑпӑр.

Римма ПРОКОПЬЕВА.
*«Хыпар», 20.06.2003, 111–112№.*

## КАЛЛЕХ ЧӐВАШ ЧУННЕ ТӐВӐНТАРАС ТЕÇÇӖ-ШИ?

1990 çулта Чӑваш парламенчӗ (ун чух эпир ӑна Аслӑ Совет теттӗмӗр) республикӑмӑрти чӗлхесем çинчен саккун йышӑннӑччӗ. Унтанпа 13-мӗш çул иртсе пырать. Çав хушӑра саккунра çырнисем пурте пурнӑçа кӗреймерӗç пулин те – чӑваш кӑмӑлне вӑл чылай хавхалантарчӗ, тӗксӗм шухӑшсене сирме пулӑшрӗ, халӑх пуласлӑхӗ çине шанчӑклӑрах пӑхакан турӗ.

Тӗрлӗ вӑхӑтра саккуна тиркешсе калаçакансем те пулчӗç. Нумайӑшне чӑваш чӗлхине республикӑмӑрта патшалӑх чӗлхин статусне пани килӗшмерӗ. 1998 çулта Патшалӑх Думи Раççей Федерацийӗнчи халӑхсен чӗлхисем çинчен калакан саккунӑн çӗнӗ редакцине çирӗплетрӗ. Çавӑн хыççӑн хамӑр республикӑри чӗлхе саккунне татах та тимлесерех тапӑнма пуçларӗç. Пӗр-икӗ хутчен «АиФ-Чувашия» хаçат тиркевлӗ материал пичетлерӗ (вӗсенчен пӗрне хирӗçлесе хурав та çырнӑччӗ).

Республика прокуратури те пирӗн чӗлхе саккунӗнчи хӑш-пӗр статья Раççейӗннипе килӗшменни çинчен асӑрхаттарсан ЧР Патшалӑх Канашӗ чӗлхе саккунне пысӑках мар тӳрлетӳсем те кӗртнӗ.

Халӗ вара кӗтмен-туман çӗртен Патшалӑх Канашӗн Вӗрентӳ, куль-

тура тата наци ĕçĕсен комитечĕ пачах та çĕнĕ «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккун проектне тăратрĕ. Çу уйăхĕн 20-мĕшĕсенче Патшалăх Канашĕ ăна пĕрремĕш вулав витĕр кăларма та ĕлкĕрчĕ. Çавăн хыççăн кăна асăннă комитет хăй хатĕрленĕ проекта «туса çитерме» ĕçлев комиссийĕ йĕркелерĕ.

Асăннă комисси чĕлхе саккунĕн çĕнĕ проектне питĕ пăшăрханса, тиркевлĕн сÿтсе яврĕ, унăн концепцийĕпе килĕшме çуккине палăртрĕ. Тÿрех калас пулать: ăна халăх кăмăл-туйăмне тивĕçтерес тĕллевпе çырман, халăха пĕлтерме юраман темле пуçлăхсене юрас, вĕсен ирĕкне пурнăçа кĕртес тĕллевпе хатĕрленĕ. Комиссире проекта кам хатĕрленине те каламарĕç, Жириновский хăйĕн ашшĕ камне пĕлтернĕ пек, «юристсем» тесе кăна хуравларĕç.

Хальхи Чĕлхе саккунĕн никĕсĕнче хавшама пуçланă чăваш чĕлхине упраса хăварас, ăна малалла аталанма пулăшас текен тĕллевччĕ. Чи малтан çав тĕллевпе ăна республикăра патшалăх чĕлхи туса хунă, çĕнĕрен вăй илме пулăшакан хăш-пĕр майсем палăртнă.

Çак шухăш çĕнĕ проектра пачах та сисĕнмест. Чăваш чĕлхи республикăра патшалăх чĕлхи шутланать тенине те ячĕшĕн кăна асăннă пек туйăнать. Чăваш халăхĕн шăпипе пуласлăхĕ çинчен шухăшлакан çынна ку вара питĕ кÿрентерет, кăмăлне хуçать, чунне тăвăнтарать. Чăваша каллех çын шутĕнчен кăларасшăн текен туйăм çуратать.

Хальхи Чĕлхе саккунне тиркекенсемпе çĕнĕ саккун проектне хатĕрлекенсене чăваш чĕринче чĕрĕлĕх туйăмĕ çĕкленни, çав туйăм сепаратизм еннелле сулăнтарма пултарасси шиклентерет пулас. Сепаратизмпа хăратасси 19-мĕш ĕмертенпех чăваш пуçĕ çинче кĕçвĕç татăлса ÿкес чул пек çакăнса тăрать. Чаплă асаттемĕре Иван Яковлевич Яковлева сепаратизм айăплавĕ ĕмĕр тăршшĕпех хăратса тăнă. Паян вара хамăр хушăри тÿре-шарах пире сепаратизм чукмарĕпе юнаса тăрать. Йăваш кăмăллă чăваш чĕри шиклĕхрен ан тасалтăр теççĕ пулас. Шиклĕ çынна пăхăнтарма çăмăлрах.

Чăвашăн вара сепаратизм туртăмĕ нихçан та пулман. Вăл темиçе çĕр çул каяллах хăйĕн шăпине вырăс çĕр-шывĕпе ирĕккĕн çыхăнтарнă, вырăс тĕнне йышăннă. Хăйне кÿрентермен чухне чăваш чĕринче вырăсран ютшăнас туйăм пулман. Пĕр хушă «тулли суверенитет» çинчен калаçакансем пулкаларĕç те—ăна ырлакансем тупăнмарĕç.

Чĕлхе саккунĕнче хиствелĕ самант кăна мар, вăл вырăнлине ĕнентерекен, ăна пурнăçлама хавхалантаракан шухăшсем те пулмалла. Хальхи саккунра вĕсем пур (ун пуçламăшне пăхăр). Çĕнĕ проектра вара вĕсем пачах та çук. Çавăнпа проект типĕ те хăрăк пек курăнать.

«Раççейри чĕлхесем çинчен» саккун çумне мĕн те пулин хушас ĕмĕтпе çыркаланисем те тĕл пулаççĕ кунта, вĕсен шутне, тĕслĕхрен, 19-мĕш статьяри 2, 3, 4 пунктсене кĕртме пулать. Вĕсенче илемлĕ литература хайлавĕсене е кинофильмсене вырăсларан чăвашла, чăвашларан вырăсла куçарма юрани çинчен каланă. Анчах та кусем саккун тăрăх тумалли ĕçсем мар. Куçару ĕçĕ ку таранччен унсăрах пурнăçланса пынă.

Паянхи чĕлхе саккунне çĕнетмелли те, хушмалли те пулма пултарать паллах. Анчах та ку ĕçе юристсем хăйсем кăна пурнăçлаяс çук. Ку чухнехи вăхăтшăн, сăмахран, икĕ е нумай чĕлхелĕхе пурнăçа кĕртсе пырасси пысăк тĕллевлĕ ĕç. Хамăр республикăрах, акă, виçĕ чĕлхе кирлĕ пулса тăчĕ: чăваш чĕлхи – республикăмăрта пурăнма (манар мар, республикăри халăхăн 70 процентне яхăн – чăваш), вырăс чĕлхи – республика тулашне тухма, ют чĕлхе – çĕр-шывăмăр тулашне тухса çÿреме, ютран йышлă килекен хăнасемпе хутшăнма. Проект вара икĕ е виçĕ чĕлхелĕхе пурнăçа кĕртме кирли çинчен нимĕн те шарламасть. Раççей саккунĕнче ку шухăш пур.

Раççейри халăхсен чĕлхисене пурне те патшалăх хÿтĕлет тенĕ Раççей саккунĕнче. Çĕнĕ проект вара çак шухăша та «манса хăварнă».

Сăмахăмăра ытлашши вăрăма ярас мар тесе проекта эпир статьяшăрăн тишкерес темерĕмĕр, унăн пĕтĕмĕшле çитменлĕхĕсем çинче кăна чарăнтăмăр. Пĕтĕмлетсе çакна кăна палăртса хăварар. Чĕлхе вăл – халăхăн ĕмĕртен пыракан пуянлăхĕ те, унăн чунĕ те, ĕмĕчĕ-шанăçĕ те, паянхи пурнăçĕ те, пуласлăхĕ те. Çавăнпа унăн шăпине юрисдикци енчен кăна пăхса хаклама çук. Çĕнĕ саккун проектне хатĕрлекенсем вара çав шайран иртеймен. Тен, иртес те темен.

**Ĕçлев комиссийĕн членĕсем:**

**В. Туркай,** Чăваш Республикин Профессионал писательсен союзĕн правлени председателĕ;
**Г. Архипов,** ЧНК президенчĕ;
**Ю. Виноградов,** Вĕрентÿ институчĕн профессорĕ, чăваш чĕлхипе литература кафедрин пуçлăхĕ;
**А. Долгова,** Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх секретарĕ;
**А. Мефодьев,** И.Я. Яковлев ячĕллĕ педуниверситетăн чăваш филологи факультечĕн деканĕ;
**М. Скворцов,** Вĕрентÿ институчĕн профессорĕ, филологи наукисен докторĕ.

**Хушса калани.** Ĕçлев комиссийĕн членĕсенчен пĕр пайĕ «юристсен ушкăнĕ» хатĕрленĕ саккун проектне татăклăн сивленине кура асăннă комисси «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккунăн çĕнĕ редакцине çырса хатĕрлеме йышăннă. Ку ĕçе тума Чăваш Республикин Наукăпа ÿнер наци академийĕн вице-президентне И.А. Андреева хушнă.

*«Хыпар», 28.06.2003, 121–122№.*

## ЯЛ ПĔТСЕН ЧĂВАШ ТА ПĔТĔ

*Иртнĕ эрне кун Шупашкарта, Г. Лебедев ячĕллĕ музыка лицейĕнче, Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн ларăвĕ иртрĕ. Пĕлтĕрхи V Аслă пухура çапла йышăннăччĕ: унчченхи пек кашни икĕ çулта Аслă пуху йĕркелеме çăмăлах мар, ун вырăнне Мăн Канаша çулленех пуçтарас тенĕччĕ. Çакна шута илсе ун йышне йăхташăмăрсем пурăнакан тĕрлĕ регионти чăвашлăх ĕçĕнчи чи хастаррисене кĕртнĕччĕ. Черетлĕ Аслă пуху иртнĕренпе çулталăк хыçа юлчĕ. Мăн Канаш йышне Шупашкарта пуçтарма вăхăт çитрĕ. Çак кун унăн ĕçне 10 ытла регионтан 70 ытла çын хутшăнчĕ.*

Яланхи йăлана пăсмасăр пухăва ЧНК гимнĕпе – несĕлĕмĕрсен «Алран кайми аки-сухи» авалхи юррипе – уçрĕç.

Кун йĕркипе килĕшÿллĕн пухăва хутшăннисем чи малтанах ЧНК президенчĕн **Г.Н. Архиповăн** докладне итлерĕç. Геннадий Николаевич Конгресс çулталăкра туса ирттернĕ ĕçсене аса илсе пуласлăх валли палăртнисем пирки чарăнса тăчĕ. Чăваш пĕрлешĕвĕсем Раççейре тата НПППра 50 ытла. Çав вăхăтрах субъектсенче чăваш наци автономийĕсем йĕркелес ĕç малалла вăй илсе пырать.

ЧНК халăх интересĕсене хÿтĕлессине тĕп вырăна хурса ĕçлет. Чĕлхесем çинчен калакан саккуна (1990 çулта йышăннă) «çĕнетесси» пирки сасхура тухсанах Конгресс хастарĕсем пăшăрханма пуçларĕç. Халĕччен йĕркеллĕх ĕçлесе пынă, унти чылай статья ăнăçлă пурнăçланма пултарнă саккунăн çитменлĕхĕсем мĕнре-ха? Вăл ытла та хăюллă пулнинче ахăртнех. Çакна çирĕплетекенĕ – кăçалхи çу уйăхĕнче Патшалăх Канашĕн сессийĕнче пĕрремĕш вулавпа сÿтсе явнă çĕнĕ саккун проекчĕ. «Кунашкалли пире тивĕçтермест», – терĕç пĕр харăс ЧНК ертÿçисем те, çыравçăсемпе ăсчахсем те, вĕрентекенсемпе ыттисем те. (Сăмах май, Мăн Канаш ларăвĕнче те асăннă саккуна сивленине, унти чылай статья малтанхинчен чылай йăвашраххине палăртрĕç.)

ЧНК президенчĕ Г.Н. Архипов çавăн пекех ăсчахсене халăх историне çырас тĕлĕшпе тимлĕрех ĕçлеме сĕнчĕ. Ачасене те унпа ытларах, тарăнрах паллаштармалла терĕ.

ЧНК пуçарăвĕпе Пăлхара – авалхи несĕлĕмĕрсен тăван кĕтесне – кайса килесси йăлана кĕрсе пырать.

Ялсенче ачасен йышĕ чакать тесе унти шкулсене хупма пуçларĕç.

«Çакă чăваш ялне пĕтерме май паракан хатĕр, – терĕ Г.Н.Архипов. – Ку енĕпе пирĕн питĕ тимлĕ пулмалла. Чăваш ялне упрамалла. Ял пĕтсен чăваш та пĕтĕ».

Тăватă çул каялла Раççейри чăваш бизнесменĕсем Шупашкарта тĕл пулнăччĕ. Çавăн чухне Оренбургри В.В. Николаевпа Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнчи В.П. Иванов ăсчах сывăх паллашрĕç те çыхăну тытса ĕçлеме пуçларĕç. Çапла çуралчĕç вĕсен пĕрлехи вăйпа пурнăçланă кĕнекисем.

Диаспорăри йăхташăмăрсем валли «Чăваш тĕнчи» хаçатăн пĕрремĕш номерĕ тухрĕ. Халĕччен вăл «Хыпарта» уйăхра пĕрре кун çути куратчĕ.

ЧНК вице-президенчĕсенчен пухура **А.П. Леонтьев, В.Г. Тяпкин, В.А. Абрамов** тухса калаçрĕç.

**А.П. Леонтьев** халăх элити пирки чарăнса тăчĕ. Пулнă-и вăл пирĕн? Халĕ мĕнле ку енĕпе? Пăлхар патшалăхĕнчен паянхи куна çити мĕнле аталанса, мĕнле йывăрлăха тӳссе ирттерсе упранса юлма пултарнă çул-йĕре тишкерчĕ вăл. «Юлашки вăхăтри улшăнусем ăна аталанма условисем туса пачĕç, – терĕ Алексей Петрович. – Нумайлăхран пахалăха куçмалли тапхăр çитрĕ. Чăн-чăн чăваш элити тăвас тесен ятарлă лицейсем уçни вырăнлă».

**В.Г. Тяпкин** хулара тăван чĕлхепе çырнă транспарантсем сахаллине палăртрĕ, хамăр тăрăхри сăвапла вырăнсене хисепе хума сĕнчĕ.

**В.А. Абрамов** ЧНК çумĕнче чĕлхе, ӳнер уйрăмне йĕркелеме сунчĕ. Ыттисем вара çак шухăша малалла аталантарса патшалăх шайĕнче çакăн пек тытăм кирлĕ терĕç.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн директорĕ **В.С. Григорьев** чăваш халăхĕн хăй ăнланулăхне çĕклес тĕлĕшпе ăсчахсемпе наци культура обществисен пĕрлехи ĕçне палăртрĕ. Ку енĕпе вăл ертсе пыракан институт пурнăçлакан ĕçсем пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Ытти регионсенче тĕпленнĕ йăхташăмăрсем патне тухса çӳреме укçа-тенкĕ енчен чăрмав пуррине пĕлтерчĕ.

Пухура халăх историне çĕнĕрен тĕрĕс çырасси патне темиçе хут та таврăнчĕç. Сăмахран, **Г.Е. Егоров**, «Шумеры» тата «Скифы» кĕнекесен авторĕ, ăсчахсем халĕччен тунă пĕтĕмлетӳсемпе (чăвашсем тĕрĕксен йышĕнчен тухнă тенипе) килĕшменнине пĕлтерчĕ. «Тивĕçлĕ условисем туса парсан халăх историйĕпе çыхăннă кĕнекепе пĕр чăрмавсăр ĕçленĕ пулăттăм», – терĕ.

Темиçе çул каялла чăваш ялĕн музейне тăвас пирки те калаçу пулнăччĕ. Пулас комплекс проектне те хатĕрленĕччĕ. Анчах «лав» вырăнтан тапранмарĕ. «Çак ыйтăва çĕнĕрен хускатасчĕ», – терĕ чăваш халăх ăсчахĕ **Н.Е. Наумов**.

Тулай чăвашĕсем те пуху ĕçне хастар хутшăнчĕç. Самарсен ĕç опычĕпе «Самар ен» хаçат редакторĕ **Н.В. Давыдов** паллаштарчĕ. Николай Витальевич вырăнти чăваш наци культура пĕрлĕхĕсем влаç органĕсемпе пĕр чĕлхе тупса ĕçленине палăртрĕ. Çакăн витĕмĕ куç умĕнчех: çулленех кунта вун-вун мероприяти иртет. Акă облаçра кăçал чăваш спартакиади ирттернĕ. Унта хутшăнса палăрнисене çĕртме уйăхĕнче Шупашкара – Республика кунĕ тĕлне – пилĕк автобуспах илсе килнĕ. Мăн Канаш членĕсем Самарсен пуçарăвне ырларĕç, ытти регионсене те вĕсен тĕслĕхне шута илме сĕнчĕç.

Чăваш Республикин Пушкăртстанри полномочиллĕ элчи **Г.З. Орлов** икĕ республика хушшинчи çыхăнусем çирĕпленнине асăнчĕ. Çулталăк хушшинче Ĕпхӳре Шупашкартан вицĕ министр пырса кайнă. Хальхи вăхăтра унта ЧПУ филиалне уçас ыйтупа ĕçлеççĕ-мĕн. Чӳк уйăхĕнче Пушкăртстанра Чăваш культура кунĕсем иртĕç.

**А.М. Филиппов** Красноярск тăрăхĕнче тĕпленнĕренпе 40 çул иртнĕ. Çапах та вăл тата унти чăвашсем хăйсен тăван çĕрĕ-шывĕпе – Чăваш Енпе самантлăха та кăсăкланма чарăнманнине палăртрĕ. «Акă тинех кĕтнĕ самант çитрĕ, – терĕ вăл. – Кăçалхи авăнăн 3-мĕшĕсенче Чăваш Республикипе Красноярск крайĕ çыхăну тытса ĕçлесси пирки килĕшӳ турĕç».

Эстонире пурăнакан **И.В. Захарова** унти чăвашсен ĕç-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Чăваш вырсарни шкулне çӳрекен ачасем ашшĕ-амăшĕн чĕлхине вĕреннине, тăван халăх культурипе, йăли-йĕркипе кăсăкланнине, Нарва хулинчи чăвашсем те хăйсен пĕрлĕхне чăмăртаннине пĕлтерчĕ.

**В.И. Сваев** Чĕмпĕр облаçĕнчи чăваш наци автономине ертсе пыма пуçланăранпа темиçе уйăх çеç иртнĕ-ха. Апла пулин те чылай ĕç тума пултарнă. Çурла уйăхĕнче облаçри чăваш чĕлхипе культурине вĕрентекенсемпе тĕл пулнă. Вĕсем хăйсен ĕçĕнче методика пособийĕсем çителĕксĕр пулнине палăртнă. Чĕмпĕр тăрăхĕнчи ĕçлĕ çынсемпе бизнесменсене ятарлă пĕрлĕх чăмăртаса тăрать, ăна та нумаях пулмасть йĕркеленĕ. В.И. Сваев çавăн пекех автономи çак кĕркунне ирттерме палăртакан мероприятисем пирки те чарăнса тăчĕ. Вĕсенчен пĕри Чĕмпĕр чăваш шкулне йĕркелесе янăранпа 135 çул çитнине халаллани пулĕ.

Тюмень тăрăхĕнче 32 пин чăваш пурăнать. Таса чăваш ялĕсем те темиçе кунта. Канаш, Александровка, Дубровное ялĕсене хăй вăхăтĕнче çак йĕркесен авторĕ те çитсе курнăччĕ. Çавăнпа та Çĕпĕр чăвашĕсем пирки яланах кăсăкланса итлетĕп. Облаçри чăвашсен «Тăван» ассоциаци председателĕ **В.Н. Логинов** каласа панине те тимлесе итлерĕм. Сăмахран, «Туслăх кунĕ» конкурса 22 халăх çынни хутшăннă, чăвашсем 2-мĕш вырăн йышăннă. Мĕнле хĕпĕртемĕн вĕсемшĕн. Çывăх вăхăтрах Тюменьте «Чăвашсем паян тата малашлăхра» ыйтупа конференци ирттерме палăртнă.

«Самар ен» хаçат ĕçченĕ **В.Е. Симаков** Самар тăрăхĕнчи ялсен энциклопедине хатĕрлет. 156 ял пирки информаци пухнă. Çак хастарăн нумаях пулмасть юбилей пулчĕ. Çавна май ăна ЧНК Тав хучĕпе чысларĕç.

Пуху ĕçне ЧР Патшалăх Канашĕн культура енĕпе ĕçлекен комитет председателе **Е.Д. Сергеева**, ЧР культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министрĕн çумĕ **М.Н. Краснов**, Ăслăлăхпа ӳнер наци академийĕн президенчĕ **И.Е. Илларионов** хутшăнчĕç, сăмах каларĕç. **Е.Д. Сергеева** çавăн пекех РФ Патшалăх Думин депутачĕн, Пĕтĕм Раççейри чăваш наци автономийĕн президенчĕн А.Г. Аксаковăн, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн М.А. Михайловскин салам сăмахĕсене вуласа пачĕ.

ЧНК пĕрремĕш вице-президенчĕ **В.А. Иванов** пухура сӳтсе явнă ыйтусем тăрăх тунă йышăнусемпе паллаштарчĕ.

Унтан республикăри архив службинче ĕçлекенсем хатĕрленĕ электрон кăларăмпа – республикăри тата диаспорăри чăвашсен пурнăçне сăнлакан ĕçсемпе – паллашрĕç. Кайран Ф.И. Мадуров ӳнерçĕ ăсталанă Юпа çывăхĕнче чăваш-пăлхарсем 780 çул каялла тутар-монгол çарĕсене çапса çĕмĕрнине асра тытса шӳрпе пĕçерсе несĕлĕмĕрсене асăнчĕç.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 14.10.2003.*

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЕ ПĔЛЕССИ ВĔРЕНТӲ ПАХАЛĂХĔНЧЕН КИЛЕТ

*Иртнĕ эрнере «Хыпарта» чăваш чĕлхипе литературине обязательнăй майпа экзамен тыттарма чарăнни тавра сăмах чылай хускатрăмăр. Чăваш наци конгресĕн Президиумĕ ЧР Президентне Н.В. Федорова ЧР Вĕрентӳ министерствин çак хушăвне пăрахăçлама ыйтса çырнине те пичетлерĕмĕр. Çавна май ку ыйту чылай тавлашу сăлтавĕ пулчĕ. «Çĕр çын – çĕр шухăш», – тенĕ ĕлĕкех ваттисем. Темĕн тĕрлĕ калаçакан та пур. Çапах вĕçĕ-хĕррисĕр шавланин усси çук. Пĕтĕмлетӳ тума вăхăт çитрĕ. Халăха хумхантаракан, пăшăрхантаракан ыйтăва уçăмлатакан тĕл пулу Мăнкун эрнипе пĕр килни те, тен, ахальтен мар-тăр.*

«Хыпар» Издательство çурчĕ ирттернĕ «çавра сĕтеле» чылайăн хутшăнчĕç: ЧР вĕрентӳ министрĕн çумĕнчен **С.В. Петровăран** пуçласа ялти учительсем таранах (вĕсемпе малалла паллаштарса пырăпăр). Калаçăва «Хыпар» издательство çурчĕн генеральнăй директорĕ-тĕп редакторĕ, Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ **А.П. Леонтьев** йĕркелесе пычĕ.

**С.В. Петрова, ЧР вĕрентӳ министрĕн çумĕ:** Чи малтанах çак хушура чăвашлăха ура хурас тĕллев пачах та пулманнине палăртас килет. Чиновниксем пĕр утăма та «çиччĕ виçсе пĕрре касмасăр» тумаççĕ. Тĕрлĕ сăлтав пĕр тĕвве пуçтарăнни хушăва пурнăç пама хистерĕ. Пĕрремĕшĕ – 1996 çулхи пуш уйăхĕн 11-мĕшĕсенче алă пуснă «Чăваш чĕлхипе тата литературипе пĕтĕмлетӳ аттестацине обязательнăй майпа ирттересси çинчен» 90№ хушăва (ун чухнехи министр Р.Н. Морозов алă пуснă) хăй вăхăтĕнче РФ Юстици министерствинче регистрацилеменни. Шкулсене, эппин, ачасемпе ашшĕ-амăшне тӳрремĕнех пырса тивекен хушусене регистраци витĕр кăлармаллах пулнă. 2001 çулта Н.В. Федоров çакăн йышши норма-право акчĕсене йĕркене кĕртме хушрĕ. Çавăнпа та çак хута пирĕн пăрахăçласа çĕнĕрен çырма тиврĕ.

Иккĕмĕшĕ – пирĕн республикăра Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕн (ППЭ) эксперименчĕ пырать-çке. Пĕлтĕр шкул пĕтерекен 15 пин ачаран 12-пинĕшĕ вырăс чĕлхипе экзамен тытма кăмăл турĕ, кăçал – 17 пинрен 14 пинĕ. Çавна шута илсе ăна та «обязательнăйсен» шутне кĕртрĕç. Вара ачасен 4 экзамен обязательнăй майпа тытмалла пулса тухать. Пурĕ 5 экзамен çеç. (6 экзамен тытассине министерство мар, шкул хăй йĕркелеме тивĕç). Эппин, наци шкулне вĕренсе пĕтерекенĕн суйлама пĕр экзамен çеç юлать. ППЭ мелĕпе аслă шкула кĕме ку çителĕксĕр. Çапла вара вырăс ачи çĕртме уйăхĕнче хăйĕн шкулĕнче экзамен парсах вĕренме кĕме пултарать, чăваш ачин вара утă уйăхĕнче тепĕр экзамен тытма хулана килме тивет. Шăпах вĕсен прависене пĕр танлă тăвас тĕллев пулнă пирĕн. Ку хушу ял ачин ашшĕ-амăшне укçа перекетлеме пулăшать (хулана кайса-килсе мĕн чухлĕ тăкакланмалла!), ачана кирлĕ ытти экзамена хатĕрленме вăхăт ытларах парать.

Виççĕмĕш сăлтав – районсенчи шкулсем ыйтни. Вĕсене Мускав хушăвĕпе паллаштарсанах министерствăна çырусем килме пуçларĕç. Ачасене обязательнăй 4 экзамен тытма йывăр пулать тесе çак хушăва хатĕрлерĕмĕр.

Унсăр пуçне кунашкал хушусем кашни çулах тухаççĕ. Эксперимент вăхăтĕнче – пушшех те. Тепĕр çул, ку мая килмесен, урăххи йышăнма пултаратпăр.

**А.П. Леонтьев:** Вырăс литературине мĕншĕн обязательней шутне кĕртнĕ-ха тата?

**С.В. Петрова:** Ку ыйтăва РФ Вĕрентӳ министерствине чылай республика-облаç тăратнă. Эпир те вĕсен шутĕнчех паллах. Вырăс чĕлхипе литературине пĕрлештерсен пурне те аван пулĕччĕ. Тен, тепĕр çул пĕрлештерĕç те. Вара чăваш чĕлхипе тата литературипе обязательнăй майпа экзамен тытассине те тавăрма май килĕ.

**В.Я. Шакров, Тăвай районĕн вĕрентӳ управленийĕн пуçлăхĕ:** Эпир те – ЧР Вĕрентӳ министерствине чăваш чĕлхипе литературин экзаменне обязательнăй майпа тыттарассине пăрахăçлама ыйтса çырнисен шутĕнче. Ахальтен мар паллах. Райцентрти шкулта 11-мĕш класра вĕренекенсене пухса канашларăмăр. 120 ачаран (пурĕ 142 ача, пĕр класĕ физкультура урокĕнчеччĕ) 85 процентĕ килĕшрĕ. Вĕсен 25 процентĕ кăçал та, ытти çулти пекех, чăваш чĕлхипе тата литературипе хăйсен ирĕкĕпе экзамен тытаççĕ. Чăваш чĕлхине хисеплесси, ман шутпа, экзаменран мар, педагогран килет.

**Л.А.Николаева, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăлти вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен:** Чăваш чĕлхи учителĕсемпе курса калаçрăм. Чăваш çĕр-шывĕнче чăваш чĕлхипе экзамен тыттарассине пăрахăçланăшăн пăшăрханаççĕ вĕсем. Ыйтса пĕлме хушса ячĕç: вырăспа чăваш литературисене иккĕшĕнчен пĕрне суйлама май çук-ши?

**С.В. Петрова:** Çук çав. Мускав вырăс литературине хистесех тыттарать.
**Г.Н. Архипов, ЧНК президенчĕ:** Экзамен çук-тăк эпир те предмет çине алă сулаттăмăр. Хальхи ачасем те çавах ĕнтĕ. Кун пек тăван чĕлхе пĕтмĕши? Иртнĕ çырав кăтартăвĕсем тăрăх 130 пин ытла чакрăмăр вĕт.

**А.И. Мефодьев, И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУн чăваш филологи факультечĕн деканĕ:** Кӳршĕ республикăсем çак лару-тăруран мĕнле тухнă-ши?

**С.В. Петрова**: Тутарстанра ППЭ пачах тытмаççĕ. (Кăçал 63 регион çак эксперимента хутшăнать, пĕлтĕр – 48). Ирçе-мăкшăсене, çармăссене те пирĕнпе танлаштарма юрамасть. Мĕншĕн тесен кашни регионра ППЭ расна. Эпир, эксперимента пĕрремĕш хутшăннисем, чи малта пыратпăр. Ыттисем – пирĕн йĕрпе. Çавăнпа Мускав кашни субъект валли уйрăм хушу хатĕрленĕ.

**П.П. Козлов, Патăрьелĕнчи 1-мĕш вăтам шкул директорĕ:** Ачасене, чăвашсенех, çăмăллăх кӳрес тĕллев пулнă ĕнтĕ ЧР Вĕрентӳ министерствин ĕçченĕсен. Кашни экзамен – ачашăн хăйсене евĕр стресс. ППЭ вара çакна темиçе хут пĕчĕклетет. Тăван шкултах (ан тив, тăван тăрăхра пултăр) экзамен парса вĕренме кĕнинчен ырри мĕн пултăр!

Вĕрентӳ пахалăхĕ экзаменран мар, учительрен килет. Экзамен пушă вырăнĕнче пулмалла мар. Ачан предмета вĕренес килнине ăша хывмалла. Чăваш чĕлхипе литературин урокĕсем сахалланмаççĕ, программи улшăнмасть, 9-мĕш класра экзамен пурте тытаççĕ. Ман шутпа, кунта ним пăшăрханмалли те çук.

**Ю.М. Виноградов, республикăри Вĕрентӳ институчĕн тĕп методисчĕ**, **чĕлхеçĕ**: Вырăс чĕлхипе чăваш чĕлхи пĕр тан тесе нумай та шухăшласа пурăнаймарăмăр, чăваш чĕлхипе литературин учительне ыттисем пекех нумай та хисеплеймерĕмĕр – каллех ĕлĕкхи пурнăç патне таврăнас хăрушлăх тухса тăчĕ. ЧР Вĕрентӳ министерствин те уçăмлă çул-йĕр шыраса тупмалли мелĕсем çукпа пĕрех ĕнтĕ. Мускавран хушаççĕ-ха та. Унта Раççей наци республикисенчен тăнине шута илмеççĕ. Раççей хăйĕн тăван вырăс чĕлхине аталантарма ăнтăлать пулсан, пирĕн те хамăр тăван чĕлхене сыхласа хăварма тăрăшмалла. Вĕсем экзаменсен шутне палăртнă чух нацисем пирки манаççĕ пулса тухать. В.В. Путин тăван чĕлхене вĕрентессине хирĕç тăракансем пулмалла мар тет. Министерство ĕçченĕсем çавна илтмеççĕ пуль е илтесшĕн те мар. Ман шутпа, пирĕн пĕтĕмлетсе Мускава çыру çырмалла. Экзаменсен шутне, ирĕклĕ тытмаллисене те, çĕнĕрен пăхса тухма ыйтмалла. Тĕслĕхрен, пулас филолога математика мĕн тума кирлĕ? Мĕншĕн ăна çак предмета вăйпа тыттарас? Вырăс литературине мĕншĕн кĕртрĕç тетĕр? Мĕншĕн тесен ăна вулас кăмăллисем сахалланчĕç. Пушă пирки сăмах хускалчĕ. ППЭ вăл – шăпах пушă. Унпа усă курса вырăс литературине вĕрентесшĕн. Пур предмет та пĕр таннине шута илмелле. Пушши пурне те вăйпа вĕрентет вăл.

**Н.И. Антонов, Красноармейски районĕн вĕрентӳ управленийĕн пуçлăхĕ**: Чăваш йышĕ чакнинче экзамен айăплă мар. Пирĕн экзаменшăн мар, ачасене воспитани парассишĕн ĕçлемелле.

**А.И. Мефодьев:** Чăваш историйĕнче çĕкленӳпе пусăрăну сахал мар пулнă. Сталин вăхăтĕнче Мускавра хаçатсене кăларма чарчĕç, республикăсенче культура центрĕсене хупрĕç, Хрущев райхаçатсене хупрĕ, Брежнев чăвашла вĕрентме пăрахрĕ. Ун хыççăнхи çĕн йĕркелӳ пире кăшт сывласа илме пачĕ. Чăн та, çĕклентĕмĕр, кĕрлерĕмĕр, малалла та кайрăмăр. Юлашки вăхăтра каллех Мускав енчен тĕксĕм сăн çапма пуçларĕ. Нумаях пулмасть «Аслă Атăл çамрăклăхĕ» фестиваль пулчĕ. Пирĕн факультетран 5 студент хутшăнмаллаччĕ унта. Шел те, пĕрне, докладне чăвашла çырнăскерне, сăмах паман. Тĕлĕнмелле вĕт. Комиссире... пĕр чăваш та пулман-мĕн.

Халь мар, хушу тухиччен пухăнмаллаччĕ. Вĕрентӳ министерствин наци интеллигенцийĕпе, ЧНКпа, ăсчахсемпе канашламасăр çак утăма тумалла пулман. Шкул директорĕсемпе канашлани çителĕксĕр, ачасемпе – пушшех те. Экзамен шăпине ачасен татса памалла мар. Вĕсем, ирĕк парсан, пĕр экзамен та тытмĕччĕç. Ю.М. Виноградов каланипе килĕшетĕп. Пирĕн республика, наци уйрăмлăхне шута илсе, пĕтĕмлетсе, ăнлантарса Мускава çыру çырмаллах.

**В.И. Сергеев, И.Н. Ульянов ячěллě ЧПУн чăваш чěлхипе литературин методика кафедрин пуçлăхě**: Кăçаллăха улшăнусем тума кая юлтăмăр. Халь хыçалтан кăшкăрсан та, шăхăрсан та лав малалла каять ěнтě. Чăнах та, хушăва алă пусиччен пирěнпе канашламалла пулнă.

**С.П. Орлова, Тăвай районěнчи Тушкил вăтам шкулěн директорě:** Ку ыйту чи малтан пире – ялта пурăнакансене – пырса тивет. Эпě шкулта 29 çул ěçлетěп, чăвашлăх пěтнине вара пěрре те туймастăп. Ялта чăвашлăх пěтме те шухăшламасть. Экзаменě пулмасан та çавах пулать. Чи кирли – учителěн шалтан çунса вěрентмелле. Унсăрăн биологи те, хими те, ытти предмет та пěтет.

ППЭ ачасемшěн мěн тери çăмăллăх пулнине ял çынни çеç ăнланма пултарать. Колхозра 200 тенкěшěн (ăна парсан лайăх-ха) ěçлекен ашшě-амăшěшěн тата мěнле савăнăç!

**В.П. Станьял, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхěсен институчěн литература пайěн ертÿçи:** Кунта чěлхе функцийěсене сарасси пирки калаçмалла. Ачаран математика, физика, вырăс, чăваш чăлхисенчен пěрне суйлама ыйтсан чăн тěрěслěх курăнěччě. Чăваш чěлхишěн вěсен 80 процентě сасăлěччě. Сěнÿ: çитес çултан республикăри пур шкулта та «регион экзаменě» тыттарма пуçламалла. Урăхла каласан – ачасем чăваш чěлхипе литературине, тăван ен историне, культурине мěнле пěлнине хакламалла.

Тăван чěлхене тутарсем, пушкăртсем, турккăсем пекех хисеплеме хăçан тытăнăпăр-ши? Унсăр пуçне математикăна мěншěн пăрăнми майпа тыттармалла? Кама кирлě – тытчăр.

**С.В. Петрова:** 2006 çултан шăпах профильлě вěрентÿ пуçланать те.

**А.П. Леонтьев:** Калаçу, ман шутпа, питě шайлă пулчě. Чăвашла сочинение пăрахăçлани пăшăрхантарать паллах. Çапах ку кăçаллăха çеç тени ырă шанăç уйратать.

Анна КАЛЛИНА.
*«Хыпар», 17.04.2004.*

## КĚВĚÇМЕ ПĂРАХĂР, ЧНКна ĚÇЛЕМЕ АН ЧĂРМАНТАРĂР

*Чăваш наци конгресне туса хунăранпа вун иккěмěш çул çине кайрě. Конгресс хастарěсем тăрăшнипе тăватă çул каялла пěтěм чăваш халăхěпе «ниме» ирттернě хыççăн ЧНК çурчě хăйěн сăн-питне улăштарчě. «Чăваш халăх çурчě» тесе ылтăн сăмахсемпе пысăккăн çырса хуни мана çеç мар, хăйсене чăваш çынни тесе шутлакан кашни çыннах мăнаçлăх кÿрет. Ытти наци республикисенчи пекех – пирěн ЧНКн та тěп хуламăрта тивěçлě çурт пурришěн чун савăнать. Çакă ЧР Президенчě те, правительство та Конгресс ěçне хакланине, шута хунине пěлтерет. Çак кунсенче чăваш халăх çурчě тавра строительсем ăшталанма тытăнчěç. Вěсем шупкаланнă кивě сăрра хырса тасатса çěнě сăн кěртме хатěрленеççě. Чăваш наци конгресěн президенчěпе Геннадий Николаевич Архиповпа тěл пулса калаçма кусем мар-ха, «Хыпар» хаçата ЧАП (Чăваш аталану партийě) ертÿçисенчен çыру килни хистерě.*

**– Геннадий Николаевич, çырура ЧНКн малтанхи тапхăрěн ěçне пысăк хак панă. Хальхи вăхăтри ěç-хěлне вара самаях критикленě. Кун пирки эсир мěн калама пултаратăр? Курăмлă ěçсем тума ЧНКна мěн чăрмантарать? Тен, пур вěсем, тен, вěсене курасшăн мар, тен, кăтартма пěлместпěр?**

– ЧНК ěçне критиклекенсем ялан тенě пекех пулнă – сулахайран та, сылтăмран та, çÿлтен те, аялтан та. Общество организацийě-çке, кам ÿркенмест – çав сăмахлать. Пуринчен ытла çакă пăшăрхантарать те. Пулăшас текен çук, сăмах çапакан вара... Халě вěт кирек мěнле пěчěк ěçшěн те укçа ыйтаççě. Вăл вара çитсех каймасть. Мěншěн тесен пире патшалăх укçа-тенкě уйăрмасть. Çапах та вăл пысăк мероприятисем ирттерме («Кěмěл сасă» фестиваль, Чăвашсен спартакиади, халăх съезчě) пулăшрě. Халăх çуртне тытса тăрассишěн вара (ăшă, электричество, шыв, 14 çынран тăракан штат) пěтěмпех ЧНК ертÿçи яваплă. Куратăр ěнтě: çаксем айккинчи çынна курăнмаççě, вěсене мěнлерех нушапа татса панине пěлмеççě.

**– Хисеплě президент, ЧНКн тěп тěллевěсенчен пěри – чăвашлăха, чăваш чěлхине упрасси, аталантарасси, унăн интересěсене хÿтěлесси. Чăваш чěлхипе тěрлě сферăра çителěксěр усă курни, чăвашсен йышě чакни, республикăмăрта вырăсланас юхăмăн палăрăмěсем самаях курăнма тытăнни чăваш чунěллě çынна хумхантармасăр тăма пултараймасть. Çавăнта мар-и тата кăмăлсăрлăх?**

– Анчах çав ěçсене мěнле майсемпе тума пулать-ха? Çакăн пирки кашни чăваш хăйсене майлă шутлама, ăнланма пултарать. ЧАП ертÿçисене пирěн ěç-хěл килěшсех каймасть пулсан – мěншěнха хăйсем нимěн те сěнмеççě?! Критиклесси вăл чи çăмăлли. Çав вăхăтрах Чăваш аталану партийě пěр-пěр пысăк та ырă ěç тунă тенине тăватă çул хушшинче пěрре те илтеймерěмěр. Хут çырма эпир пурте маçтăр, анчах ěç тăвасси патне çитсен, темшěн, пěтěм хевте таçта кайса кěрет.

Пире «концертсемпе çÿретěр» тесе ÿпкелеççě. Унсăрăн мěнле пултăр-ха. Пěр-пěр ěç тăвас тесен халăха мěнле пуçтармалла, мěнле калаçмалла? Ěçне тăвас тесен тата мěнле укçапа тумалла тет вара? ЧНК çумěнчи Вячеслав Христофоров ертсе пыракан «Янра, юрă» ушкăн чăвашсем пурăнакан çěр-çěр ялта пулчě. Тěллевěсем тěрлěрен: тăван халăха чăваш юррисемпе савăнтарасси, мероприятисем ирттересси, суйлав кампанийě вăхăтěнче пултарулла чăвашсене пулăшасси. Самар тăрăхěнче, сăмахран, Шунтал районěн ертÿçине В. Петров чăваша суйлаччăр тесе «Янра, юрă» ушкăн кăна мар, ЧНКн чылай активисчě те хутшăнчě. Мěншěн тесен асăннă çыннăмăр чăвашсемшěн нумай ырă ěç тунине лайăх пěлетпěр.

Ăнланма тăрăшман çынна ăнлантараймастăн. Тěлěнмелле: «Кěмěл сасă» эстрада фестивальне, Чăвашсен спартакиадине мěншěн ирттеретěр?» текенсем те пур. Çакăн пек мероприятисем кирлěлěхне паян шкул çулěнчи ача та ăнланать пуль тупата. Республика тулашěнче йышлă пурăнакан чăвашсем патěнче вунвун мероприяти иртет. Вěсем тем пек чěнсен те пур çěре те çитме май çук. Çакă каллех укçа-тенкěпе, транспорт ыйтăвěпе çыхăннă. Апла пулин те çулталăк хушшинче чылай регионта çитсе вун-вун тěл пулу, калаçу ирттернě. Унсăрăн çыхăнусем епле йěркеленччěр, ěçлě лару-тăру епле пултăр? Чăваш обществисен ертÿçисемпе йěркеленě тачă çыхăнăва пěр самант та татмалла мар. Вěсенчен Чăваш наци культура автономийěсем туса хума çине тăрса ыйтрăмăр. Ку ěç те аванах йěркеленсе-пурнăçланса пырать. Çакăн йышши «хура» ěçсене эпир тумасан кам тăвě?! Обществăсенчи яваплă çын кирек хăçан та пирěн пата ыйтупа тухма пултарать. Мěншěн тесен чăваш халăхěн çуртěнче талăкěпех дежурство йěркеленě. Пěр ыйтăва та хуравсăр хăвармастпăр.

Эпир никама та чăвашлăх ыйтăвěсемпе ěçлеме чармастпăр, майсем кăна туса паратпăр. Майсем вара ЧНК çуртěнче пур. Килěр, ěçлěр пěрле.

**– Геннадий Николаевич, чăваш хутлăхěнче Правительство çыннисем Конгресс ěçне хутшăнасшăн, ăна витěм кÿресшěн текен сăмах-юмах çÿрет.**

– Хирěçтерсе ярас тесе çапла хăтланаççě пулě. Хальлěхе пěр-пěрне ăнланса ěçлеме тăрăшатпăр. Хăш-пěр ыйту çине тěрлěрен пăхатпăр пулин те. Тавлашса, хирěçсе пурăнни ку тарана çитсе никама та усă кÿмен-ха. Пěрле ăнланса ěçленě чухне хамăрăн шухăш-кăмăла министерствăсене те, Президент патне те çитерме, ěнентерсе пама та пулать.

**– Пытарма кирлě мар, эсир çакăн пек хитре çуртра вырнаçнăшăн хăш-пěрисем хытă кěвěçеççě. Çак хăтлăха «ниме» туса хăвăр кěртрěр пулин те. Çавăн пекех, кăна калассăмах килет, çуртра бизнеспа ěçлекен организацисене вырăн панăшăн сире аванах ÿпкелеççě.**

– Пěлетěр ěнтě: юхăнса кайнă Ехрем хуçан çуртне Чăваш наци конгресне тăватă çул каялла пачěç. Чи малтанах Чăваш Республикин Президенчě Николай Васильевич Федоров çине тăнипе. Çурта юсăр, хăтлăх кěртěр, вара чăваш халăхěшěн усă курăр терěç ЧР Правительствинче.

Ун чухне, каçарăр та, куç-пуç хăрамалла ӳкерчĕкчĕ: çурт путваленче çур метра яхăн шыв, шыв кайнипе арканнă стенасем, пӳлĕмсем, пăхма хăрушă алăксем, чӳречесем, хăпарма май çук картлашкасем тата ытти те, тата ытти те.

Мĕнех, çанă тавăрса, пĕтĕм чăваш халăхне «нимене» хутшăнма чĕнсе каласа ĕçе пуçăнтăмăр. Çурт тăррине хĕç тимĕр витрĕмĕр. Урам енчи стенасене сăрласа илемлетрĕмĕр. Çурт йĕри-тавра пин тăваткал метра яхăн асфальт сартăмăр. Çынсем, организацисем кам укçапа, кам тимĕрпе, кам цементпа, кам хăйăрпа, кам ĕçпе пулăшрĕç. Республика çыннисем кăна мар, аякри чăвашсем те пуçарулла пулчĕç пархатарлă ĕçре. Пĕтĕмпе 42 пин çын ытла «нимене» хутшăнчĕ. Çав вăхăтрах халăх çуртне юсаса хăтлама пĕр тенкĕ те хывман çынсем паян çуртри пӳлĕмсене пайласшăн, хăйсен туса хурасшăн. Тĕлĕнмелле вĕт.

Асăннă çуртра юсав ĕçĕсем пуçланиччен çичĕ пӳлĕмре 211 тăваткал метр усăллă лаптăк пулнă. Халĕ, реконструкци тунă хыççăн, усăллă лаптăксен калăпăшĕ тата 414 тăваткал метр хушăнчĕ. Мĕншĕн çавăн чухлĕ ĕç турăмăр-ха? ЧНК бюджетне тума, хамăр ĕçе лайăх йĕркелеме, çурт-йĕре йĕркеллĕ тытса тăма. Çаксене çĕнĕрен тунă лаптăксене арендăна парсан çеç пурнăçлама май пур.

Кирек мĕнле бизнесмен та юхăнса кайнă патшалăх çуртне йĕркене кĕртме хывнă укçи-тенкине çав пурлăхпа усă курса аренда укçине тӳлемесĕр каялла тавăрать. Анчах та пире çак çăмăллăхпа усă курма парасшăнах мар. Эпир ЧР Президентĕнчен «ниме» вăйĕпе тунă лаптăксене пĕтĕмпех ЧНКна пама ыйтасшăн. Вара Конгресс уставĕн тĕллевĕсене пурнăçлама пысăк майсем пулĕччĕç.

Геннадий МАКСИМОВ ыйтса пĕлнĕ.
*«Хыпар», 29.04.2004.*

## ЧНК ПАТШАЛĂХĂН ЭТНОШОУ ПАЙĔ ПУЛСА ТĂЧĔ

**(Чăваш наци юхăмĕнчи лару-тăру)**

Чăваш наци ирĕклĕхĕн юхăмĕ çĕнĕ тапхăрта хастаррăн ĕçлеме пуçланăранпа вунă-вун пилĕк çул иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Çак хушăра тоталитаризм саманинче пурăнса ирĕклĕхшĕн тунсăхланă халăх хăйсене хăй халăх пек туйма пуçлани, малашнехи пурнăç ирĕккĕн те йĕркеллĕн пуласса шанни халăха тĕлĕнмелле вăй парса пычĕ, мал ĕмĕтлĕ пулма хавхалантарчĕ. Çав вăхăтра, паллах, наци ирĕклĕхĕшĕн тăрăшакан, кĕрешекен организацисем йĕркеленмесĕр тăма пултарайман. Сăмахран, Чăваш наци конгресĕ ирĕклĕх сывлăшĕпе хăват илсе пуçланса кайрĕ. Ăна пуçарса яракансем асăннă тĕллеве шута илсе хавхаланнă, пирĕн халăх ирĕклĕ те хăватлă пултăр, тĕнчери цивилизациллĕ ытти халăхсен шутне кĕтĕр тесе ырми-канми ĕçленĕ. Çавăнпах ĕнтĕ ЧНК кĕске вăхăтрах халăхăн питĕ авторитетлă та сумлă организацийĕ пулса тăчĕ.

«Чăваш Республикин патшалăх суверенитечĕ çинчен» деклараци йышăнни, Чăваш Республикипе Раççей Федерацийĕ хушшинчи договора алă пусса çирĕплетни, «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен», «Чăваш Республикин массăллă информаци хатĕрĕсем çинчен» саккунсем тата ытти норма-право акчĕсем йышăнни, тоталитаризм саманинчи ертӳçĕсен коллективлă явапсăрлăхне пĕтерсе явапллă влаç тытăмне ПРЕЗИДЕНТ ДОЛЖНОÇНЕ КĔРТСЕ ТĔРЕКЛЕТНИ пирĕн республикăн тĕнчери статусне çĕклесе çӳллĕ шая хăпартрĕç.

Анчах та тĕрлĕ сăлтава пула чăваш наци ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен юхăм пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пусăрăнма пуçларĕ, унăн обществăри витĕмĕ чакнăçемĕн чакса пычĕ. Çакăн чи пысăк пĕлтерĕшлĕ сăлтавĕ вăл, пирĕн шутпа, чăваш наци интеллигенцийĕ халăха тивĕçлĕ шая çитиччен пиççе çитменнинче, халăхăн авангарчĕ пулса пĕтейменнинче, паянхи цивилизаци ыйтакан шайран юлса пынинче.

**Çак çитменлĕхсемпе урăххисем усă курса республика влаçне ярса илчĕç те çӳлерех асăннă çитĕнӳсене сисĕнмелле мар майĕпен хавшатнăçем хавшатса пычĕç, хăйсене кирлĕ пек усă курма тытăнчĕç. Суверенитет çинчен калакан декларацие ним вырăнне хумасăр, республикăра пурăнакан халăха мар, Мускаври çӳллĕ вырăнта ларакан чиновниксене юраса, хăйсем декларациленĕ цивилизациллĕ процедурăсене пăхăнмасăр Чăваш Республикин Конституцийĕ текен устав йышăнтарчĕç, республикăри чĕлхесем çинчен калакан саккуна хавшатнăçемĕн хавшатса пырса ăна мĕскĕнлентерсе ячĕç, Чăваш патшалăхĕн тĕнчери статусне антарнăçемĕн антарса пычĕç.**

Мĕскĕнле политикăна пула Чăваш патшалăхĕн политика статусĕ анчах мар, экономикăри тата пурлăхпа çыхăннă ытти лару-тăрăвĕ те хавшанăçемĕн хавшаса пычĕ. Паян Чăваш Республикин административлă территорийĕнче вырнаçнă харпăрлăхăн питĕ сахал проценчĕ анчах хамăр патшалăх тата халăх аллинче шутланса тăрать. Тепĕр çĕрте хамăр патшалăхăн влаç структурисенчен ытла Мускавран хушса тăракан влаç структурисем хуçаланаççĕ. Чăваш халăхĕ вăл наци те мар, апла пулсан тĕнче правипе килĕшӳллĕн унăн патшалăх йĕркелеме право пулма пултараймасть текен идеологи сарма тытăнчĕç.

Чĕлхесем хушшинчи танмарлăх ӳснĕçем ӳссе пырать. Чăваш чĕлхеллисем хамăр патшалăхрах дискриминаци тӳсеççĕ. Хăйĕн тăван çĕрĕнче, хăйĕн патшалăхĕнче чăваш çитмĕл процента яхăн пулсан та, бюджета тата патшалăхпа урăх сийри влаç структурисене тирпейлĕн те туллин налук тӳлесе тăрать пулсан та çавна валли патшалăх условисем туса паманнине пула тăван халăх тăван чĕлхипе пурнăçăн хуçалăх, экономика, ытти сферинче усă курма пултараймасть. Пачах урăхла — Чăваш патшалăхĕ республикăра çирĕм процентран ытларах мар пурăнакан вырăс халăхĕн чĕлхишĕн, ăна аталантарассишĕн анчах тăрăшать, мĕн пур вĕренӳпе тата пĕлӳ парассипе çыхăннă система çавăншăн çине тăрса ĕçлет. Кунсăр пуçне тата чăваш чĕлхипе паракан информаци пространстви анлăланса пырас вырăнне хĕсĕннĕçемĕн хĕсĕнсе, мĕскĕнленнĕçем мĕскĕнленсе пырать.

Шел те, тепĕр чухне Чăваш патшалăхĕ хăех чăваш чĕлхине иртнĕ саманапа, мĕскĕнлĕхпе çыхăнтарса тӳнтерле сăнарлантарать те халăха хăйĕн тăван чĕлхинчен пистерет, чĕлхе тĕлĕшĕпе пĕр вырăс чĕлхин культне анчах сарать. Пирĕн шутпа, тӳнтерле çак лару-тăру малашне обществăра социаллă хирĕç тăрулăх, нацисен хушшинчи хирĕçӳсем патне илсе çитерме пултарать. Паллах, кун пек ан пултăр тесен шухăшлама ӳркенмен çынсем пăшăрханмасăр тăма, çакăн евĕрлĕ тенденцие сирсе ярас тесе тăрăшмасăр тăма пултараймаççĕ. Çавна тума республикăра граждан обществин аталаннă институчĕсем, патшалăхпа çыхăнман тата ăна пăхăнман массăллă информаци хатĕрĕсем кирлĕ. Шел, вĕсем хальлĕхе питĕ имшер-ха.

Чăваш Республикин общество тата политика организацийĕсен, чи малтан, паллах, Чăваш наци конгресĕн паянхи тĕп тĕллевĕ, пирĕн шутпа, шăпах çак асăннă киревсĕр пулăмсене хирĕç тăрасси пулмалла, вырăнти проблемăсене ăнăçлă татса парса халăха Раççей Федерацийĕ шайĕнчи пăтрашуллă пулăмсене глобализм юхăмĕн тӳнтерле витĕмне хирĕç кĕрешме ертсе пымалла. Хăй вăхăтĕнче чи сумлă та хăватлă «Чăваш наци конгресĕ» ятлă общество организацийĕ, çав стратегиллĕ тĕллевсене пулах патшалăхшăн хăйсене евĕрлĕ NON GRATA пулса тăмасăр юлма пултарайман. **Çавăнпа та влаç Конгресс авторитетĕнчен шикленсе, патшалăхăн вышкайсăр пысăк мелĕсемпе те меслечĕсемпе усă курса ăна хăйĕн аллине ярса илме тăрăшрĕ. ЧНК организаципе финанс тĕлĕшĕнчен çирĕпленсе çитейменнине, ăна ертсе пыракансем хăйсем хушшинче пĕр чĕлхе тупайманнине тата ытти сăлтавсене пула хавшама тытăнчĕ, халăхра унăн авторитечĕ пĕтме пуçларĕ. Çак пулăмсене пула хăйĕн пысăк майĕсемпе усă курса патшалăх органĕсем Чăваш наци конгресне майĕпен хăйĕн аллине çавăрса илчĕç те унпа хăйсене кирлĕ пек усă курма пуçларĕç.**

Çавăнпа та майĕпен ЧНК патшалăх институчĕн ăнăçлах мар вак уйрăмĕ анчах пулса тăрса юлчĕ. Паллах, çакăн евĕрлĕ лару-тăру хăйсене хăй хисеплекен çынсенчен никама та çырлахтарма пулта-

райманнипе «Чăваш наци конгресĕ» ятлă этношоу проектне хутшăнма килĕшменнисем унтан пăрахса тухса кайрĕç. Асăннă лару-тăрăва тÿрлетес тесен, пирĕн шутпа, паян çакăн пек ĕçсем тусаирттермелле: вăхăта вăраха ямасăр ЧНК Мăн Канашне пухмалла; унта Конгресăн тата унăн ертсе пыракан органĕсен паянхи лару-тăрăвне тата унпа çыхăннă мĕн пур ĕçсене уççăн та ирĕклĕн сÿтсе явмалла; 2004 çулхи кĕркунне Чăваш наци конгресĕн Аслă пухăвне пухма палăртмалла, çавăнпа çыхăннă йĕркелÿ ĕçĕсене палăртса хумалла; Конгресăн çĕнĕ Уставĕн тата чăваш наци аталанăвĕн концепцийĕн проекчĕсене хатĕрлекен ушкăн йĕркелемелле; ЧНК тата унăн ертсе пыракан органĕсен ĕçĕсене республикăра тата унăн тулашĕнче тухса тăракан массăллă информаци хатĕрĕсенче яланах уççăн çутатма мĕн пур майсем туса памалла; Аслă пухăва хутшăнма республикăри, Раççейри тата тĕнчери патшалăхпа çыхăнман авторитетлă общество организацийĕсене йыхăрмалла; Чăваш наци конгресĕн ертсе пыракан органĕсен хушшинче унăн коллективлă институчĕсен витĕмне ÿстермелле. **Чăваш наци аталанăвĕ чăнахах та паянхи кун ыйтакан çĕнĕ шая çĕкленсе хăватлантăр тесен патшалăхăн Чăваш наци конгресĕн ĕçне уççăн та, вăрттăн та хутшăнма пăрахмалла.**

Атнер ХУСАНКАЙ, Чăваш наци конгресĕн хисеплĕ президенчĕ,
Николай ЛУКИАНОВ, Чăваш аталанăвĕн партийĕн ертÿçи.
*«Капкăн», 2004, 25№.*

## ДЛЯ ЧЕГО ЖЕ СОЗДАН КОНГРЕСС?

*На страницах газет и журналов появилась серия статей о Чувашском национальном конгрессе. Опубликованы обращения и открытые письма почетного президента ЧНК А.П. Хузангая, вице-президента В.П. Станьяла, лидера партии ЧАП Н.Е. Лукианова, коллективный ответ газете «МК» в Чебоксарах». Сейчас на разных уровнях идет их обсуждение. Мы обратились с просьбой рассказать о ситуации в ЧНК к одному из его организаторов, заведующему отделом литературоведения и фольклористики Чувашского института гуманитарных наук В.П. Станьялу.*

**– Известно, послесъездовская (с 2002 года) работа ЧНК Президиумом оценена неудовлетворительной. Как это понять: решили высечь сами себя?**

– Не удовлетворяет работа не всего ЧНК, а его Центрального исполнительного комитета, а еще точнее – тех, кто на зарплате сидит в «Доме чувашского народа» в Чебоксарах. В целом региональные структуры ЧНК весьма продуктивны, самостоятельны и достойны похвалы. Мне по заданию института недавно посчастливилось побывать в Тюмени (руководитель ассоциации «Тăван» В.Н. Логинов), Самаре (В.Д. Калмыков, Н.В. Давыдов), Татарстане (К.Г. Яковлев), и смело могу сказать, что там чувашские культурные автономии весьма боевиты, целеустремленны, действуют по утвержденным планам. Но хвалить за это ЦИК ЧНК не приходится.

Считаю нормальным, что члены Президиума В.Г. Тяпкин, В.И. Ермаков, директор Фонда ЧНК К.П. Портнов, испытывая муки неудовлетворенности, подняли вопрос о деятельности центрального штаба и потребовали отчета от ответственных лиц. Их открытым письмом поддержали А.П. Хузангай и Н.Е. Лукианов. Предусмотренного уставом отчета не дождались, имеется лишь акт о вопиющих финансово-хозяйственных нарушениях.

Оказалось, что новый устав не зарегистрирован. Договоры субаренды помещения не составлены, штатные единицы и сметы расходов не утверждены, пропали автомобили, затопили (в прямом и переносном смысле) кафе «Родник». ЦИК ЧНК потерял главный – объединительный – ориентир, разогнал ветеранов национального движения, закрыл постоянно действующие комиссии, погряз во внутренних разборках. Такое состояние не может быть удовлетворительным. Не для того создан ЧНК. Надо исправиться. И незамедлительно.

**– Не обвиняют ли руководство ЦИК ЧНК в дружбе с властями?**

– За дружбу никого и никогда обвинять нельзя! Наоборот, надо крепче дружить! Дружить в республике, дружить и советоваться в Москве, Кишиневе, Киеве, Самаре, Тюмени, Иркутске... Дружба и солидарность – первый девиз ЧНК. Наша республика четко определила свои ориентиры, налицо успехи. На этом фоне ЧНК непременно должен обновлять свои программы и продвигать все лучшее, что имеется в республике, во всю ширь диаспоры. К сожалению, ЦИК перестал обогащать философско-идеологическую базу Конгресса и вырабатывать формы и методы повышения самосознания нации. Вместо совершенствования системы своей деятельности развалил с трудом созданную инфраструктуру. Задачи Чувашской Республики и интересы чувашской диаспоры никак не противоречат друг другу. Так в чем же проблема? В слабости чувашской интеллигенции.

**– Разве интеллигенция виновата в провалах ЧНК?**

– Кто обобщает итоги исторического развития, кто рождает идеи, кто готовит планы? Кто направляет развитие культуры? В агрессивно наступающий период глобализма на национальной интеллигенции лежит ответственность за выбор пути самовыживания народа, за его дальнейшее духовное здоровье. Тонкая прослойка чувашской гуманитарной интеллигенции, которая участвовала в работе ЧНК, оказалась неустойчивой. Меня крайне удивляют негативные высказывания некоторых моих коллег по поводу русского и других народов, чувашского языка и национальных культур, положения чувашского народа в рамках целостной Российской государственности. Это провокационные заявления. Отсутствие четкой позиции и программы, незнания уставных требований ЧНК руководством Конгресса породили антидемократические настроения даже среди членов Президиума и Большого Совета. Как говорил на Ассамблее народов России Рамазан Абдулатипов (мне приходилось слушать его будучи членом совета Ассамблеи), некоторые интеллигенты с радостью перешли от «совкового» тоталитаризма к «ларьковому», от меркантильного «холуяжа» к лакейскому пресмыкательству и «политическому блуду». Таких в Конгрессе быть не должно! Новое поколение национальной интеллигенции должно пробить дорогу к национальному движению, вывести из кризиса и чувствовать ответственность за свой народ. Верю и надеюсь.

**– Вас называют традиционалистом и апологетом мифологической этнорелигии. В проекте концепции современного чувашского национального движения сторонникам традиционной культуры вынесено осуждение. Чем Вы парируете?**

– Конкретными делами. Бескорыстной работой в Союзе чувашских краеведов. Книгами, учебниками. Я действительно считаю, что стержневой в народе была и остается его самобытная культура. В основе чувашской культуры – его религиозное учение, мифы и фольклор, орнаменты, узоры, трудовые и праздничные традиции. По долгу службы я их изучаю. Изучаю и испытываю гордость за предков. Думаете, случайно наградили книгу «Мир чувашской культуры», выпущенную в Самарской области, престижной медалью имени Януша Корчака? У нас есть что изучать. У чувашского народа стройная система мифов и легенд, сложная и мудрая этнорелигия, неоценимо богатая символика и орнаменты, чудо веков – древняя письменность. Рад, что впервые в таком полном объеме изданы мифы, легенды и предания чувашского народа. На очереди – сказки, песни, поговорки, благословения. Институт намерен издать 50-томный свод чувашской народной словесности.

Не скрою, я убежденный сторонник традиционной национальной культуры. Если чуваши откажутся от родной культуры, то они перестанут быть народом! Самобытная культура – сердцевина нации. И разве ЧНК может думать по-другому? Лучшие традиции надо возрождать. Так и делаем. Проводим мы, например, поездки по древним местам предков в Сувар и Булгар, выезжаем на Акатуй в диаспору. Без малого десять лет на историческом месте возле деревни Малый Сундырь проводим ежегодно древний праздник «Хравути пуххи», и в этом году и. о. президента ЧНК В.Г. Тяпкин, члены Президиума приехали и поздравили сельчан, премировали победителей детских, подростковых и молодежных соревнований ценными подарками. Это ведь позиция ЧНК. Возрождение чувашской школьно-учебной и спортивной Улыпиады, историко-культурных территорий, традиционных праздников, проведение различных общенациональных фестивалей,

помощь чувашским школам, краеведам диаспоры давно и органично вписались в Положение о деятельности ЧНК.

**– Что планируется на будущее? Когда соберется съезд ЧНК и какой вопрос будет главным?**

– Дату и повестку дня съезда определит Большой Совет. Заседание назначено на октябрь этого года.

Определен состав оргкомитета по его проведению. Главным вопросом Совета и съезда никак не должно быть лишь обсуждение проблем работы ЦИКа ЧНК. Не это интересует делегатов из далеких краев. Судьба родной нации, обогащение культурного, интеллектуального, нравственного потенциала, повышение благосостояния и самосознания, плодотворная связь между регионами – вот основные задачи Конгресса. Над ними и надо работать всем членам Большого Совета, всем центрам и автономиям во всех уголках страны и мира.

Беседовала Эрбина НИКИТИНА.
*«Республика», 4.08.2004* .

## «ВЛАҪПА КĔРЕШМЕ ТĔЛЛЕВСЕМ ҪУК!..»

**(ЧНКн анлă канашлăвĕнче тухса каланисем)**

**Н. М. Адёр:** Чăваш наци юхăмне пулăшма, вăйлатма, сарма тунă Чăваш наци конгресĕ хăрушла кризиса кĕрсе ӳкрĕ. Июнь уйăхĕнче «МК в Чебоксарах» хаҫатра ЧНК Президиумĕн членĕсен заявленийĕнче Конгресс штабĕнчи тискерлĕ ĕҫсем ҫинчен пĕлтерчĕҫ. Халăх суйланă Президиум членĕсемпе канашламасăр укҫа-тенкĕ тăкаклаççĕ, отчетсем тумаççĕ, ĕҫĕсем вĕтелсе-путланса пыраççĕ...

Кивелнĕ устав тăрăх ЧНК штабĕнчи ертӳҫĕсен полномочийĕсем пилĕк ҫул каяллах пĕтнĕ. Асăннă Чăваш нацийĕн общество организацине ҫине тăрса тасатса ҫăлса хăвармалла.

**Н. Петров:** Президиума усă тума пĕлмен ҫынсене суйланă. Чăвашсен спорт вăййисене мар, яппун вăййисене сарать В. Тимофеев. Университетран вара Конгресра виҫĕ вице-президент кĕртнĕ. Мĕншĕн ун чухлĕ кĕртмелле пĕр учрежденирен?

**А.П. Капитонов:** ЧНК пĕтсе ларать е ăна ҫĕнетмелле, ЧНК президенчĕн киревсĕр ĕҫĕсем ҫинчен эпĕ тахҫанах каланă. Пока Г. Архипов президент – унта ура ярса пусмастăп терĕм! Пирĕн «патовăй» ситуаци. Мăн Канашра вак-тĕвек ыйтусене ҫеç тăратнă, повестка абсурдлă! Съезд пухма патшалăхсăрах укҫа тупăпăр.

**А.И. Кибеч:** Мăн Канашрах съезд ирттерес пирки калаҫас пулать. Съездне тепĕр 2–3 уйăхран ирттермелле. Эпир сире вăрҫтарасран хӳтĕлеме тăрăшатпăр, Конгреса пĕтме памалла мар.

**Ю.С. Михайлов:** Организацие ҫăлса хăвармалла. Ҫĕнĕ уставне регистрацилеттермесен Юстици министерстви хупма пултарать. Ҫак ĕҫе хальтерех тăвасчĕ.

**О.М. Цыпленков:** Вице-президентсене куҫран пăхса лартнă, нумайăшне протокола та кĕртмен. Мăн Канашăн кун йĕрки тĕрĕс мар, вăл ревизи комиссийĕнчен отчет итлеме пултараймасть. Аслă пуху пуҫтарса йĕркепе ĕҫлеме пуҫламалла! Ваттисен Канашĕн айăпĕ пысăк, патшалăх-администраци структурисем демократи принципĕсене пусарса пыраççĕ.

**В.Г. Тяпкин:** Чăвашлăхшăн кĕрешекен ҫынсене хăш-пĕр вице- президентсем кӳрентернĕшĕн каҫару ыйтатăп. Эпĕ хам та ҫав тери йăнăшнă Архипова хӳтĕлесе. Эпир укҫа тăкаклани ҫинчен ыйтсан: «Сирĕн ĕҫ мар!» – тет. Тепĕр чух эрнипех ĕҫе тухмасть. Ăҫта кайни паллă мар.

**В.П. Станьял:** П.С. Краснов патĕнче пултăмăр. Калаҫу йĕркеллĕ иртрĕ, харкашусем те сиксе тухрĕҫ, анчах та проблемăна татса парас ҫул курăнмарĕ-ха...

**В.Н. Тимофеев:** Архиповăн хăйĕн ирĕкĕпе тухса каймалла, шавламасăр.

**В.С. Пряников:** 1-мĕш кварталта Конгресс пухмалла, вара патшалăхран пулăшу та пулĕ укҫа енчен.

**В.П. Иванов:** Вĕтелсе-вакланса кайрĕҫ калаҫусем. Аслă пуху ирттересси йывăр ĕҫ. Съездра халăх нумай кирлĕ мар. Сасăлакан ҫынсене квотăпа суйламалла. Президента Мăн Канашра суйламалла. Мăн Канашрах ЧНКн концепцине, программине сӳтсе явмалла. Мăн Канашра съезд ирттерме оргкомитет тумалла. Раскол пурри куҫ кĕрет.

**В.Г. Тяпкин:** Йĕркесĕрлĕх хуҫаланать ЧНК кантурĕнче. 99 процент ĕҫ япăххи президентран килет. ЧНКна шала кĕрсе кайсан – унта «бомба»!

**Н.Е. Лукианов:** Влаҫăн хăйĕн позицийĕ ĕнтĕ, хăйсене майлă ҫын кирлĕ. ЧНКн системăлла кризис. ЧНК малтан йышăннă идеологие тытса пыраймарĕ. Мăн Канашра концепци йышăнмалла, Устава пăхса тухса ҫирĕплетмелле.

**Н.М. Адёр:** Тепĕр 4–5 уйăх ҫак лачакара ҫăрăлма, киревсĕрлĕхсене чăтманиепле те юрамасть. Общество организацийĕн хăйĕн чирĕнчен хăйĕнех тасалмалла. Тӳррипе каласан – вырăнти влаҫăн пуласлăхĕ иккĕленӳллĕ, кĕпĕрнесем туса наци республикисене пĕтересшĕн. Влаҫăн полномочийĕсем ҫав тери пысăк пулсан та – общество организацийĕн хăвачĕ вăйлăрах пулма пултарать. В.В. Путин Чăваш наци конгресне хупма пултараймасть. Ваттисен Канашĕн пуҫлăхне Анатолий Ильич Кибече ЧНК президенчĕпе калаҫма, ăна хăйĕн должноҫĕнчен хăй ирĕкĕпе тухмашкăн сĕнме, ӳкĕте кĕртме ыйтас.

**Праски Витти:** Раççей системи чăвашсене ҫине тăрсах пĕтерет. Чăвашсене хăйсен тĕнчи кирлех. Халăх хăй туррине пăрахсан пĕтет. Чиркӳ ҫине чиркӳ тăваççĕ, халăха хăратса пупсем укҫа шăйăраççĕ.

**М.Г. Андронов:** Конгресăн влаҫпа тавлашса, влаҫшăн кĕрешсе пĕр тан пулмалла мар. ЧНКн хăйĕн вырăнне тупас пулать. Тĕп тĕллев – халăха хӳтĕлесси. Съезд ирттерессине тăсса яма юрамасть.

**Э.К. Бахмисов:** Ĕҫре тасалăх кирлĕ. Ытти халăхсенчен те нумай вĕренмелле, мари халăхĕ тĕнче шайĕнчи ĕҫсене хутшăнать.

**В. Солдатов** (депутат): Этнопарк тума пулăшăпăр. Конгресăн ҫак ыйтупа ҫывăрса юлма юраман.

**В. Алексеев:** Влаҫа наци юхăмĕ кирлĕ мар, анчах та тĕнчере наци юхăмĕ кирлĕ.

**В. Лукианов** (Мăн Канаш членĕ): Конгреса малалла аталантармалла. «Кĕмĕл сасă» йĕркелесе ятăмăр. Съезда декабрĕн 15-мĕшĕсенче ирттермелле.

**В.П. Эктель:** Тутар Республикинче чăваш ялĕсем патне асфальт ҫул ҫитмест. Пирĕн мухтанма юратаççĕ. Пĕр-ик ҫурта газ кĕртсе факел чĕртсен каллех мухтанаççĕ. Конгреса аякран тутар, вырăс майрисем килсе сасăлаççĕ. Кунта халăх шучĕпе апат ҫисе пурăнса Архипова мухтаççĕ. Съезд ирттермелли куна хăйсене юрăхлă кандидат хатĕрлеме тăсаççĕ. Патриотсенчен хăраççĕ, влаç наци юхăмне хăй аллинчех тытасшăн.

**А.И. Кибеч:** Архипов ĕҫлемест тесе калама юрамасть. Вăл хăех укҫа тупать, пултарнă таран ĕҫлет. Мĕн кĕвĕҫмелли пур вăл укҫа ĕҫлесе илнинчен, ҫирĕм пин-и, вăтăр пин-и унта. Конгреса пĕтермелле мар.

**П.С. Пупин:** Хула генпланне ют ҫынсене тума пачĕҫ 4 мĕльюн тенкĕлĕх. К. Иванов палăкне урăх вырăна куҫарса лартмалла, халĕ вăл темле кĕтесре тăрать.

**В.П. Станьял:** Оргкомитета апрелĕн 28-мĕшĕсенче Президиумра суйланă. Эпир ҫак кун Архипова шанманнине ҫирĕплетрĕмĕр, вăл вара отпуска кайрĕ. Оргкомитет ертӳҫи пулма В.Г. Тяпкина хушнă. Кайран, темиҫе уйăхран, лешсем урăх оргкомитет турăмăр теме пуҫларĕҫ.

**В.Г. Тяпкин:** Паян та халăх нумай пуҫтаранчĕ. Пĕрле ĕҫлесен тивĕҫлĕ шая ҫĕкленĕпĕр, пирĕн влаҫпа кĕрешме вăрттăн тĕллевсем ҫук. Мăн Канаша пурне те пыма чĕнетпĕр. Халăх умĕнче уççăн пĕрле калаҫма, ĕҫлеме.

29.09.2004.
Николай Адёр. *Чăваша мĕн ҫитмест?*
*Шупашкар, 2005, 24–26 с.*

## ЧНК Мăн Канашĕн пухăвĕ
## ТАШĂ-ЮРĂ ТАПХĂРĔ ВĔÇЛЕНЧĔ. МАЛАЛЛА МĔН?

*Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн çулленхи черетлĕ пухăвĕ кăçалхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕсенче иртрĕ. ЧНК пирки пĕтĕмĕшле çакна каламалла: ăна 1992 çулта йĕркелесе янă. Тĕп тĕллевĕ – тулайри чăвашсемпе ĕçлесси, вĕсемпе çыхăну йĕркелесси тата ытти те. Çак тапхăр çĕн йĕркелӳ саманчĕпе пĕр килчĕ, çавна май наци аталанăвĕ енĕпе те пысăк ушăнусем чылай пулчĕç. Унта е кунта çеç мар, йăхташсем пурăнакан пур вырăнта та фольклор ушкăнĕсем чăмăртанчĕç, уявсем йĕркелеме пуçларĕç. Хăш-пĕр регионта вырсарни шкулĕсемпе чăваш лицейĕсем уçăлчĕç, тăван чĕлхепе хаçатсем кун çути курчĕç, радиопа чăваш сасси янăраса кайрĕ. Кусем – пурнăçа кĕртнисем. Малалла мĕнлерех ĕçлемелле, мĕн палăртмалла? Çакăн пирки, тĕпрен илсен, пулчĕ темелле те калаçу Мăн Канаш пухăвĕнче. Яланхилле ЧНК президенчĕ мар, унăн вице-президенчĕсем пĕлтернисенчен пуçланчĕ вăл.*

**В. Иванов** – ЧНК пĕрремĕш вице-президенчĕ – халăха пĕлӳ парассишĕн яваплă. Мĕн тума пултарнă-ха çулталăк тăршшĕнче? Массăллă информаци хатĕрĕсемпе çыхăну тытсах тăрать, 10 ытла статья пичетлесе кăларнă. Йăхташсем йышлă пурăнакан регионсене те тухса çӳренĕ, тĕл пулусенче сăмах каланă. «Пĕрлĕх кирлĕ пире, çавă çеç чăвашсене упраса хăварма пулăшать», – çак шухăша тĕпе хурса ĕçлет Владимир Александрович.

**В. Абрамов** çамрăксен хушшинче вĕрентӳ, культура ыйтăвĕсемпе ĕçлессишĕн яваплă. Мускавра, Тутарстанпа Пушкăртстанра пулса çитĕнекен ăрупа тĕл пулусем йĕркеленĕ. Наци кадрĕсем хатĕрлес ыйту та çивĕч тăнине шута илсе кăçал Самартан 8 çамрăка Чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш уйрăмне вĕренме илнĕ. «Кĕмĕл сасă» эстрада фестивалĕ те çамрăксене явăçтарма пуçларĕ. Кăçал Гран-прие П. Борисова студентка тивĕçрĕ, А. Николаев космонавт летчик çуралнăранпа 75 çул çитнĕ май ачасен сочиненийĕсен конкурсĕ кăсăклă иртнĕ. Тĕрлĕ вырăнти чăваш ачисенчен темиçе çĕр çыру килнĕ.

ЧНК çумĕнче кĕрешӳ тата каратэ спорт федерацийĕсем чăмăртаннă. **В. Тимофеев** каратэ енĕпе ĕçлет. Вячеслав Александрович пĕлтернĕ тăрăх – республикăра асăннă спортпа ачасене кăсăклантарасси начар мар пырать. «Шел, диаспора чăвашĕсен хушшинче ĕçлесе каяймарăмăр-ха, – терĕ В. Тимофеев. – Малтан пирĕн специалистсене хатĕрлес пулать».

**В. Тяпкин** ЧНКра экономика ыйтăвĕсемшĕн яваплă. Унăн тĕллевĕсенчен пĕри – чăваш бизнесменĕсене пĕтĕçтересси. Владимир Геннадьевич В. Юркин (Мускав), О. Мустаев (Чĕмпĕр), К. Яковлев (Хусан), Л. Григорьев, А. Капитонов, Н. Герасимов, А. Самакин (Шупашкар) ячĕсене лайăх енĕпе палăртрĕ. Чылай мероприятие вĕсем пулăшнипе ирттернĕ.

**В. Станьял** чĕлхепе халăх йăли-йĕркине тытса пырас тĕлĕшпе яваплă. «Ташă-юрă тапхăрĕ иртрĕ. Тĕп тĕллев – çамрăксен. Вĕсен сывлăхне çирĕплетесси, вĕрентӳ ĕçне йĕркелесси. Тулай чăвашĕсемпе ĕçлеме И. Яковлев пек çын кирлĕ», – терĕ Виталий Петрович. Çавăн пекех вăл чĕлхе енĕпе малашлăх план хатĕрлемеллине палăртрĕ.

В. Станьял этнопарк тăвас ыйту патне те таврăнчĕ. 1995 çулта унăн проектне хатĕрленĕччĕ. Вăл «Шупашкар: 500 çул» паркра пулмаллаччĕ. «Чăваш халăхне чыс кӳрекен кермен курас килет», – терĕ В. Станьял.

**В. Лукьянов** ЧНКра 6-мĕш çул вăй хурать. «Кĕмĕл сасă» эстрада фестивалĕн проектне пурнăçа кĕртекенсенчен пĕри. Хăй артист пулнăран сцена çинче чăн профессионалсене курасшăн. Çавăнпа та диаспорăри ертӳçĕсене юрлама пĕлмен «çăлтăрсемпе» мар, халăхра палăрнă ăстасемпе çыхăну тыттарасшăн. Сăмахран, ЧНК çумĕнчи «Янра, юрă» ушкăн кăçал çеç республика тулашĕнчи 20 пин ытла йăхташпа тĕл пулнă.

Массăллă информаци хатĕрĕсем енĕпе ЧНКра **А. Леонтьев** вице-президент яваплă. Алексей Петрович республикăри, регионсенчи чăвашла кун çути куракан кăларăмсене тишкерсе хак пачĕ. Хальхи вăхăтра чăваш пичечĕ енĕпе хăш енĕпе туса çитерменни пирки сăмах пуçарчĕ. Вĕсенчен пĕри ача-пăча (1–3 классенче вĕренекенсем) валли куллен тухакан ятарлă хаçат çуккипе çыхăннă.

Писательсене те сăмах тиврĕ. Публицистика çуккишĕн критиклерĕ вĕсене А. Леонтьев. Тепĕр çивĕч ыйтăва – чăвашла пĕлмен чăвашсене мĕн вулаттармаллине те – хускатрĕ вице-президент. Вĕсем валли «вырăсла, анчах чăваш чунĕллĕ» ятарлă кăларăм çуккине, çавăн пекех термин тăвас ĕç те вырăнтан тапранманнине аса илтерчĕ. «Шел те, ку енĕпе хальлĕхе «Хыпар» хаçатăн пĕччен ĕçлеме тивет», – терĕ Алексей Петрович.

Чăваш кĕрешĕвĕ пирки **В. Васильев** каласа кăтартрĕ. Чăн та, ăна пропагандăласси начар мар пырать. Самар, Чĕмпĕр, Тутарстан хутлăхĕсенче, Мускавра лайăх ĕçлеççĕ ку енĕпе. Республикăра вара – Шăмăршă, Елчĕк, Муркаш, Шупашкар районĕсенче, Çĕнĕ Шупашкарта. 2006 çулта чăваш кĕрешĕвĕ енĕпе республика чемпионатне ирттерес тĕллев те пур.

ЧНК ĕçтăвкомĕн председателĕ **К. Портнов** чăвашлăх енĕпе саккун майĕсемпе ытларах ĕçлесчĕ терĕ. Депутатсем суйлас тĕлĕшпе те пуçаруллăрах пулмаллине палăртрĕ.

**И. Захарова** (Эстонии), **В. Бурмистров** (Мускав) вырăнти ĕçсем пирки пĕлтерчĕç.

Вице-президентсем, ыттисем тухса каланине тимлĕ итлесе ларнă хыççăн ЧР Президенчĕн администрацийĕн Ертӳçи–ЧР культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин, архив ĕçĕн министрĕ **П. Краснов** сăмах илчĕ.

– Нумай ырă сĕнӳ патăр паян, – терĕ Петр Степанович. – ЧНК хăйĕн çурчĕллĕ пулчĕ. Мĕн тунипе лăпланма юрамасть, çĕнĕ обществăра, саманара çĕнĕлле ĕçлемелле.

Ку енĕпе мĕн тумалла-ха? Чи малтанах, пурнăçран юлас мар тесен, пĕлĕве ӳстермелле. Республикăра культурăпа искусство институчĕ йĕркелесе янă. Унта кăçал Пушкăртстан çамрăкĕсене те вĕренме илнĕ, ытти регионсен те пуçаруллăрах пулмалла.

П. Краснов министра культурăри культурăсăрлăх питĕ тарăхтарать. Сăмахăм хăйсене «çăлтăр» тесе шутлакан юрăçсем хула урамĕсенчи юпасем çинче «çакăнса» тăни пирки-ха. Вулакан ăнкарчĕ пулĕ, хăйсем мар, концерта йыхравлакан афишисем вăлтĕртетсе тăраççĕ. Тухса калакансен чылай шухăшĕпе килĕшнине палăртрĕ Петр Степанович. Писательсене вĕсем йăрăрах пулмаллине, пурнăçпа тан пымаллине палăртрĕ, культурăпа искусствăра чылай енĕпе специалистсем (дирижерсем, театр критикĕсем) çитменнине йышăнчĕ.

Ревизи комиссийĕн отчетне итленĕ хыççăн **Н. Давыдов** (Самар), **Н. Лукианов** (Шупашкар), **В. Симаков** (Самар), **К. Малышев** (Хусан), **А. Капитонов** (Шупашкар) сăмах илчĕç.

ЧР вĕрентӳпе çамрăксен политикин министрĕн çумĕ **С. Петрова** паянхи наци шкулĕсем пирки пĕлтернипе хăшĕ-пĕри килĕшесшĕн пулмарĕ. Ялсенче ачасем сахал пулнипе вырăнти шкулсене хупса автобуспа ют яла – база шкулне – турттарнине те сивлекенсем тупăнчĕç. Шкул пĕтсен ял та пĕтет, терĕç вĕсем.

Министр çумĕ вара ял пĕтесси шкулпа мар, унта ĕç вырăнĕ çуккипе çыхăннă терĕ.

Чăн та, çакăн сăлтавĕ пĕр япаларан çеç мар, вун-вун пулăмран килет ахăр. Çапах та çуллен ачасен шучĕ 5–7 процент тарăн чакса пыни пурне те шухăшлаттармалла.

**А. Леонтьев** вице-президент 2002 çулхи пĕтĕм халăх çыравĕн малтанхи пĕтĕмлетĕвĕсемпе тата чăваш аталанăвĕн ыйтăвĕсемпе тухса калани те пухăва хутшăннисене хумхантарчĕ. Епле-ха апла

ан пултăр? 1989 тата 2002 çулсенчи çыравсен хушшинче 136 пин чăваш «çухалнă». Çакăн сăлтавĕсене палăртнипе пĕрлех Алексей Петрович чăваш ялне упраса хăварассипе ĕçлемеллине асăнчĕ. Çырав кăтартăвĕсем тăрăх республика шайĕпе ăслăлăх практика конференцийĕ ирттерме тивĕçлине те пĕлтерчĕ.

Регионсенчен килнĕ тата Мăн Канашăн выранти членĕсем каланине итленĕ хыççăн ЧНК президенчĕ **Г. Архипов** сăмах илчĕ.

– Республикăра 50 ытла общество организацийĕ. Тем тесен те ЧНК вĕсенчен пур енĕпе те пуçаруллăрах, – терĕ Геннадий Николаевич. – Çапах та çакă эпир тăвакан ĕç пире пур енĕпе те тивĕçтерет тени мар. Вырăна, региона тухса çӳренипе çеç çыхăнăва кирлĕ пек йĕркелеме май пулĕ. Ку енĕпе ЧНКн пуçарулăх пулчĕ, çулталăк хушшинче вун-вун ялта тĕл пулу ирттернĕ, чăваша паян хумхантаракан ыйтусене тапратнă.

Çывăх вăхăтри тĕллевсем те уçăмлă: наци этнопаркне йĕркелесси, ЧНК Уставне улшăнусем кĕртесси, халăх историйĕ пирки тĕплĕнрех ĕçлесси, ЧНКн хăйĕн пичет органне тумалла тата ытти те, – терĕ президент. – ЧНК VI Аслă Пухăвне çитес çулхи пуш уйăхĕн 18–19-мĕшĕсенче ирттерни вырăнлă та меллĕ пулĕ.

ЧНК Уставне улшăнусем кĕртес енĕпе ĕçлекен комиссие **М. Краснова, А. Леонтьева, Н. Лукианова** суйларĕç.

Пухура çавăн пекех чĕлхе экологийĕ пирки резолюци, ытти йышăнусем турĕç.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 13.10.2004, 198№.*

# 2005, пуш, 19: VI Аслă пуху



ЧНК Мăн Канашĕн савăнăçлă ларăвне килнĕ йыш. 2007, чӳк, 3.

## ТĔП ТĔЛЛЕВ МĔНРЕ?

*Чăваш наци конгресĕн пĕрремĕш Аслă пухăвĕнчен таврăннă хыççăн унăн ĕç-хĕлĕ пирки делегатсенчен куçа-куçăн ыйтакан питĕ нумай пулчĕ. Ырлакан та, сивлекен те пайтахчĕ вĕсен йышĕнче.*

– Чăваш наци конгресĕ кама мĕн усă пачĕ-ха? – ыйтатчĕç пĕрисем.

– Халĕччен мĕнле пулнă, çаплах юлĕ, улшăну-мĕнĕ пулмĕ, – тетчĕç теприсем.

– Калаçса ирттермелли черетлĕ пуху çеç пек туйăнать, – хакларĕç виççĕмĕшсем.

Çапла, чăвашсен Аслă пухăвĕ никамшăн та çимелли-ĕçмелли пурлăх хушмарĕ. «Апла пулин те эпĕ Конгресс пĕлтерĕшне çÿллĕ шая лартатăп, – тенĕччĕ эпĕ хамăн пĕчĕк хайлавра (Муркаш район хаçачĕ «Çĕнтерÿ ялавĕ», 1992, юпа, 20). Мĕншĕн тетĕр-и? Чăвашсен авалхи ăнланăвĕ тăрăх çут тĕнче сакăр енлĕ те сакăр кĕтеслĕ çав. Сакăр енлĕ тĕнчен сакăр кĕтесне сапаланнă чăвашсем хăйсен историйĕнче пĕрремĕш хут Аслă пухăва пуçтарăнса чăваш пурнăçĕн ĕç-хĕлĕ çинчен калаçни темрен хаклă.

Аслă пухăвăн тĕп тĕллевĕ те сĕтел çинчи çăкăр-тăвар пирки пулман. Ăна хускатма та шутламан. Çавăнпа та куç умĕнчех мĕн те пулсан татăлса ÿкессе, кĕсьене е енчĕке кĕрессе шанни кăлăхах.

Аслă пухăвăн тĕп тĕллевĕ – чăваш чĕлхи, наци чĕрĕлĕвĕ, чăвашлăх пĕтес хăрушлăха сирсе ярасси, чăваш ăс-пурлăхне аталантарасси. Çак çивĕч ыйтусен йывăрлăхне нимле тарасапа та виçме çук. Унăн пулас утăмĕ те çавах.

Аслă пуху асра юласси вара паллах. Сакăр енлĕ çут тĕнчен сакăр кĕтесне сапаланнă чăн чăваш делегачĕсем ку чухнехи хуйхă-суйхă çинчен каласа ыттисен чун-чĕрине хумхатĕç, тĕрлĕ ыйту хускатĕç, вĕсене çивĕчлетĕç. Вара чăвашлăх ыйтăвĕ тĕпелтен анлă çул çине тухĕ. Анчах вăл хăвăрт та çийĕнчех пулакан ĕç мар. Унăн «тупăшне» те паян-ыранах кураймăн. Вăл чи кăткăс ĕçсенчен пĕри. Малашне тумалли, пурнăça кĕртсе пымалли ĕç нумай, питĕ нумай.

Конгресс вара наци чĕрĕлĕвĕн тумхахлă çулĕ çинчи пĕрремĕш утăм çеç. Пĕрремĕш чан сасси. Çав сасă тĕнчипе саланĕ. Çав паха».

Унтанпа вăхăт пайтах иртрĕ. Улшăнусем те пулчĕç. Çавсене витĕр тишкерессĕм килет.

Кĕскен каласан – тăвалла пулсан та, ÿсĕм тума пысăк тÿсĕм кирлĕ пулин те – утăм хыççăн утăм турăмăр тени вырăнлă пулĕ.

Чăваш ячĕ-сумĕ халĕ тĕнчере паллă, янăравлă, чыслă та хисеплĕ вырăнта. Халăхăмăрăн пурнăçне çĕнĕ сăн çапрĕ. ЧНК ялавĕ айĕнче ун йыхравĕ анлă çул çине тухрĕ. Чăваш тĕнчи курăмлăрах, тарăнрах палăрма пуçларĕ. Эпир ăна пурте куратпăр, туятпăр, уншăн хĕпĕртетпĕр.

Анчах, чăваш калашле: «Лашан ури тăваттă, тăваттă пулсан та такăнасси пулать». ЧНК умĕнче тăракан калама çук пысăк та кăткăс ыйтусене татса панă хушăра такăнмасăр та, йăнăшмасăр та епле-ха!

Илер-ха чĕлхе хăватне, унăн тасалăхне. Илемлĕхне тата ытти чипер енне. Чăваш чĕлхи çĕр пичĕ çинчен çухалас хăрушлăх пулнă, пур-ха, пулĕ те. Çав юхăма чарас тесен мĕн тумалла-ши? Ака хăш-пĕр шухăш. Мĕтри Юман: «Пирĕн чи малтан çырулăх, ăслăлăх, патшалăх чĕлхинче таса чăваш чĕлхи тумалла» (Суйласа илнисем. Ш., 1997, 408 стр.).

«Çеçпĕл» кинофильм пирки халĕ (35 çул тултарнă май) калаçу пуçланчĕ. Çавăнпа кăвар чĕреллĕ Çеçпĕлĕмĕрĕн сăмахне илсе кăтартни те вырăнлă пулĕ: «Чăваша – чăваш чĕлхи!» – тенĕ вăл. Ăш-пиллĕ шухăша амалантарма унăн тепĕр сăмахне аса илер: «Чăвашăн малалла ăслăлăх вĕренес пулать. Тĕнче пысăк, тĕнчере темĕн те пур. Тĕнчене пĕлсе тăрăшмасăр май çук. Çаксене тума, вĕренме, йĕрке пĕлме чĕрĕ сăмах, çаврăнăçуллă калаçу, чĕлхе кирлĕ. Пурнăç – чĕлхесĕр пулмасть. Чăваша вырăс чĕлхипе пурнăç тутараймăн. Чăваша чăваш чĕлхи кирлĕ» (Çеçпĕл Мишши. Çырнисен пуххи. Ш., 1989, 405 стр.).

Çакăнта илсе кăтартнă вырăна – чăвашăн малалла ăслăлăх вĕренес пулать тенине куçаруçăсем: «В дальнейшем чуваш непременно должен учиться», – тесе куçарнă. Чи кирлĕ сăмахне, пысăккăн илсе кăтартнă тĕслĕхĕн тăпса юпине – ăслăлăх тенине – «манса» хăварнă е шута илмен. Мĕне кирлĕ чăваша ăслăлăх тенĕ пулĕ. Вырăсла куçарни, Петĕр Хусанкай каланă пек, «ниçталлисĕр таçталла» тениех мар-и?

Ăслăлăх... Вăл тÿрех ярса илмелли кайăк мар, ăна тытма çирĕп тĕллев, пăрăнми ăнтăлу, темиçе чĕлхе пĕлни т.ыт.те кирлĕ. Мĕтри Юман, ăна асăнтăмăр тăк, «нимĕç, француз, грек, латин, тĕрĕк чĕлхисене ăса илет, акăлчанла калаçма хăнăхать», – паллаштарать пире В. Станьял. Çавăн пек ăслă çынсене сакă çутă тĕнчене кÿнĕшĕн пирĕн хĕпĕртемелле кăна. Вĕсен ÿсĕмĕсем ăслăлăхпа уйрăлми çыхăннă.

«Халĕ чăваш чĕлхи умĕнче çĕнĕ тапхăр, вăл ытти халăхсем пекех тĕреклĕ пулса чăваш ĕç сыннине ăслăлăх çулĕ çине илсе тухмалла» (412 стр.).

«Ăслăлăх çулĕ çине!» илсе тухмалла, ку вăл хăй тĕллĕнех пысăк тĕллев.

Чăваш чĕлхине «пуянлатма» ытларах вырăс чĕлхи енне сулăнни, кивçене кайни сиенлĕ йăла пулса тăчĕ.

Çум курăкĕ акас марччĕ тăван чĕлхемĕрĕн пархатарлă ани çине. Тăван чĕлхе тасалăхне çÿп-çаппа тултарас марччĕ. Хальлĕхе вĕсем хамăр асăрхамасăрах хирĕле-хирĕле, сăрхăнсах кĕреççĕ.

«...Чăвашла калаçнă чухне хамăр чĕлхере сăмахсем пур çинчех вырăс чĕлхине кивçен каяс марччĕ, тăванăм», – ăшшăн, ырă кăмăлтуйăмпа асăрхаттарнă Петĕр Хусанкай.

ЧНК Аслă пухăвĕ çĕнĕ вăй, çĕнĕ ăнтăлу, кăйкăр çунатлăхĕ хушĕ. Каллех, тăвалла пулсан та, малаллах утăпăр.

Василий МОЖАЕВ, ЧНК Ваттисен Канашĕн членĕ.
*«Хыпар», 11.03.2005, 45№.*

## Атнер ХУСАНКАЙ: «ПИРĔН ПАЯН НАЦИОНАЛИСТСЕМ ÇУК»

*Атнер Петрович Хусанкай – Чăваш наци конгресĕн пĕрремĕш президенчĕ. Хальхи вăхăтра – унăн хисеплĕ президенчĕ. ЧНК пĕрремĕш Аслă пухăвĕ пулнăранпа вун икĕ çул ытла иртрĕ. Çак кунсенче вара çĕр-шывĕпе сапаланнă йăхташăмăрсен чи маттур та хастар ывăлĕсемпе хĕрĕсем 6-мĕш Аслă пухăва пуçтарăнĕç. XX ĕмĕр вĕçĕпе XXI ĕмĕр пуçламăшне лекрĕ çак тапхăр. Мĕнлерех пулчĕ вăл? Чăваш наци юхăмĕн ĕç-хĕлĕнче мĕнлерех йĕр хăварчĕ? ЧНК пĕлтерĕшĕ мĕнлерех шайра паянхи кун? Çак тата ытти ыйту тавра калаçрăмăр та Атнер Хусанкайпа.*

– Манăн шухăшăмпа, çав вăхăт – иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен пуçламăшĕ – хальхипе танлаштарсан урăхларахчĕ, тапрану вăхăчĕ пулнă, – çапла пуçларĕ хăйĕн сăмахне Атнер Петрович. – Унтанпа пурте улшăннă, халĕ урăх пурнăçпа пурăнатпăр. Çакă куç умĕнчех. ЧНК пĕрремĕш Аслă пухăвне лайăх ас тăватăп. Ун чухне халăх чăмăртанăвĕ, пĕрлĕхĕ, унăн пĕр шухăшлăх пулни, ăна ăнланни, йышăнни вăйлă палăратчĕ. Çав вăхăтри тытăм – хура халăх, ун мими – наци интеллигенцийĕ тата тÿре-шара – хушшинче пĕр шухăшлăх пурччĕ (тен, тÿре-шара ЧНКн хăш-пĕр йышăнăвне ăшра ырласах çитереймен, хура халăх вара ăнланса пĕтереймен пулсан та).

**– Паян вара?**

– Халĕ пач урăхла лару-тăру. Кашни хăй пурнăçĕпе пурăнать. Наци интеллигенцийĕ пур-и, çук-и – ку та ыйту. Пĕчĕк ушкăнсем, çынсем çеç çав шухăшпа аппаланаççĕ. Ун чухне республикăра пулса иртнĕ тĕрлĕ ĕç пирки наци интеллигенцийĕ хăйĕн шухăшне пĕлтеретчĕ. Халĕ кирек мĕнле йышăну ту – никам та нимĕн те шарламасть.

Ун чухнехи ЧНК шăпах халăха вăратакан, тапратакан пулнă. Халĕ те çав тĕллевех – халăхпа ĕçлессине, хăйĕн шухăшне унра сарассине – пурнăçласа пымаллаччĕ. Малтанхи 3–5 çул тытса пычĕ вăл çав çул-йĕре.

ЧНКн тепĕр пĕлтерĕшĕ – вăл аякра тĕпленнĕ йăхташăмăрсене пĕтĕçтерме пултарнă, пĕрлĕх никĕсне хывнă.

**– Çав юхăма хавшатма май панă сăлтавсене асăнма пултаратăр-и?**

– Самана урăх сывлăшпа сывлама пуçларĕ. Паллă ĕнтĕ: Конгресс

чăмăртаннă тапхăрта демократи «çеçкереччĕ». Пресса ирĕклĕччĕ, калас шухăша хăрамасăрах пĕлтерме пултарнă. Çакă халăха тапратрĕ, вăратрĕ. Суйлавсем пирки те çакнах каламалла. Ирĕклĕччĕ вĕсем. Шухăш тĕрлĕрен пулсан та хаçатсем пичетлетчĕç вĕсене.

Халĕ чăваш тĕнчи текен уçлăх пур. Вăл тĕрлĕ майпа аталанса пырать. Анчах та юлашки 3–4 çулта çĕнĕ шухăшсем курăнмарĕç, кивĕ саппаспах пурăнкалатпăр. Çĕнĕ саманара çĕнĕлле, лару-тăрăва кура аталанмалла.

<. . .>

*Наци политики вăл, ман шухăшăмпа, патшалăх органĕсем тытса пыракан политика мар, вăл – халăх хăй йĕркелекен, витĕм кӳрекен ăнтăлу. Халăхăн хăйĕн çакăн пек кăмăлĕ пулмасан ăна патшалăх органĕсем тытса пыракан нимĕнле наци политики те çăлаймасть.*

*Халăхĕ ирĕклĕ пулмасан уйрăм çын ниепле те ирĕклĕ пулма пултараймасть. Çавăнпа та уйрăм çын прависене халăх правине хирĕç тăратни тĕрĕс мар.*

*Оппозицире пулма çăмăл. Критиклетĕн – яваплăхĕ çук. Шăв-шав пулни хăш-пĕрисен ят-сумне çĕклет-тĕр. Чăваш Республикинче вара çак çул тухăçлă мар. Пирĕн патшалăх влаçĕне килĕштерсе ĕçлемелле, хăш-пĕр чухне ăна хирĕçле шухăш та каламалла. Тĕп ыйту – çĕнĕ влаç халăхран ан ютшăнтăр çеç.*

*Чăваш идейи пур-и? Пур. Анчах та хальлĕхе эпир ăна хальхи условисен шайĕнче халăх ăнланмалла уçса параймарăмăр пулас. Вырăссен, тутарсен патриотизмĕ пур-и? Калама пултараймастăп...*

*(А. Хусанкай ЧНК Мăн Канашĕн анлă ларăвĕнче тунă докладран. –1994, юпа).*

**– ЧНК чăмăртаннă чух эсир хăвăр валли мĕнлерех тĕллевсем палăртнă?**

– СССР арканнă чухне ытти халăх ирĕке тухнишĕн савăнаттăм. Юлашки империи арканать те пысăк мар халăхсен ĕмĕрĕ пуçланать теттĕм. Истирири халăхсем – французсем, акăлчансем, нимĕçсем. Историре пулма пултараканнисем – вырăссем, украинсем... Историсĕр халăхсем – чăваш йышшисем. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче эпир историе кĕрсе юлмалли шанăç çитнĕ теттĕм. Çакă чи пысăк тĕллев пулнă.

**– Çак тĕллеве пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕн тума пултартăр?**

– Енчен те эпир тăван халăха çĕнĕ историре курас тетпĕр пулсан, пирĕнте чĕрĕ вăй пулмалла. Ку енĕпе хăй вăхăтĕнче Тĕнчене тухайман халăхсен организацийĕпе (ТТХО–UNPO) çыхăну йĕркелеме пултартăмăр. Паянхи ЧНК ĕçченĕсен те çак тĕллеве – тĕнчене тухассине, ун умĕнче хамăрăн шухăша палăртассине, кăтартассине (чĕлхе, культура урлă) – пурнăçласа пымалла та.

Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче, тĕрĕсрех, 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче, ЧНК шайĕпе официаллă мар çыхăнура хамăра кăтартма пултартăмăрах тесе шухăшлатăп.

*Пирĕн никама та шанмалли çук. Хамăр вăйпа, Чăваш наци конгресĕ пек аслă ниме пухса эпир тем те пултармалла-çке. Чăваша хăйсене пĕрлештерекен ăнлавсен (идейисен) йышне çаксене кĕртес килет: 1) Тăванлăх – ку вăл сăваплă таса туйăм, халăх вăл çул пуç та, пĕр пысăк йыш-çемье те; 2) Танлăх – эпир пур халăхсемпе тан пуласшăн; 3) Килĕшӳ (грекла гармони) – çут çанталăкпа килĕштерсе пурăнмалла, чăваш ун йĕркине нихăçан та пăсман, хисеплесе тăнă.*

*Пурăнан пурнăçра тем те пулать. Хамăр ăнланулăха та çухатрăмăр е çухатса пыратпăр, чăвашлăха та малашлăхра мар, аваллăхра шыратпăр – ун пек вара вăл чĕрĕ пулмасть, нумай япаларан шикленетпĕр е вăтанатпăр.*

*Кашни халăхах, çĕр çинчи мĕн пур чĕрĕ япала пекех, пурăнма, малалла аталанма ĕмĕтленет. Хăйĕн вăрăм историйĕнче савăнăçне те, хурашурне те сахал мар курнă чăваш халăхĕ те, тоталитарлă империтытăмĕн халăхсене хирĕçле наци политикин сĕрĕмĕ сирĕлнĕ май, хăй çине урăх куçпа пăхма пуçларĕ. Чăваш халăхĕ чухăн халăх мар. Ун пинпин çул пуçтараннă, упраннă ăс-хакăл мулĕпе чун-чĕре пуянлăхĕ пур – çут çанталăкпа тачă çыхăнса тăракан тĕнче курăмĕ – философийĕ, хăйсене евĕр культури.*

*(ЧНК Аслă пухăвĕнчи çумдокладран. – 1992, юпа).*

**– Паянхи ЧНК ĕçченĕсем эсир пуçланă ĕçе туса, тытса пыраяççĕ-и?**

– Калама йывăр. Пĕрремĕшĕнчен, çакă самана сывлăшĕнчен килет. Иккĕмĕшĕнчен, унта кам ĕçленипе, унăн тавра курăмĕпе çыхăннă. Çынни мĕнле – ĕçĕ те çапла.

ЧНК чăмăртаннă чух чăвашлăх ĕçĕнче пире никам та пулăшас çуккине, хамăра çеç шанмаллине асра тытса ĕçленĕ. Вăл вăхăтри тӳре-шара та çав шухăша йышăннă.

Конгресăн паянхи ертӳçисем тӳре-шарана нимĕн те хирĕçлеймеççĕ. Тĕрĕссипе, вĕсем политикăпа кăсăкланмаççĕ те пулĕ. ЧНКн ăна яланах хирĕç пымалла теместĕп. Юлашки тапхăрти информаци уçлăхне илер-ха. Эпир хăй вăхăтĕнче кĕске хумлă радиостанцисем тăвас ыйту лартнăччĕ. Халĕ вара пур япалана та пĕтерсе пыраççĕ.

Геннадий Никандрович Волков академик 1971 çулта: «Яковлев патне малалла!» – тесе каланăччĕ. Ăна ун чухне хĕстерчĕç, унăн Мускава тухса кайма тиврĕ. Халĕ манăн йыхрав çакăн пек: «Яковлев патне каялла!» И.Я. Яковлев вăхăтĕнчи шая çĕнĕрен таврăнатпăр мар-и? Чăваш телевиденийĕ, радиовĕ çук. Чăваш шкулĕ – пуçламăш класс шайĕнче. Малалла каяс вырăнне каялла шăватпăр.

**– Аталану вăйĕ ан чактăр тесен паян мĕнлерех ĕçлемелле? Çитес Аслă пухура мĕн пирки ытларах калаçмалла?**

– Чăвашлăх – абстрактлă ăнлав. Вăл тĕрлĕ пултарулăх енĕсенчен (ăслăлăх, ӳнер, литература...) тăрать. ЧНК ертӳçисен хушшинче те çавсемпе çыхăннисем пулмалла. Халĕ вĕсене, шел те, унта курсах каймастăп. Чăвашлăх, чăвашлăх тенипех нимĕн те пулмасть. Тĕслĕхрен, паянхи эстрада «çăлтăрĕсем» те, чăвашла юрлаççĕ пулсан та, чăвашлăхпа çыхăнман. Вĕсен тĕллевĕсем урăхла.

Иртнĕ ĕмĕрте чăвашлăх енĕпе ĕçленĕ çыравçăсен шутне алăри пӳрнесемпе палăртма пулать: К. Иванов, Çеçпĕл Мишши, П. Хусанкай, Ç. Элкер, Митта Ваçлейĕ, Илпек Микулайĕ, П. Осипов. Вĕсем чăвашлăх ĕçне хăйсен поэзири, прозăри сăмахĕ урлă пурнăçланă.

**– Паянхи литература ĕçченĕсене çапла тума мĕн чăрмантарать?**

– Ку вĕсен айăпĕ мар, инкекĕ тейĕпĕр. Тĕп шухăш çухалнă. Аслă та тăнлă çынсем ăна ăнланнă. Чăваш тĕнче курăмĕ пĕтĕм тĕнче курăмĕпе шайлашуллă пулмалла. Хальлĕхе вăл пирĕн хамăр шайра çеç-ха. Пирĕн аслă поэтсем тĕнче шайне хăпарнах. Хальхи çыравçăсенчен чылайăшне паянхи вăхăт сывлăшĕ çитмест. Çыравçăн тивĕçĕ мĕнре-ха? Вăл чĕлхене çĕнетсе тăнинче, чĕлхе хăватне кăтартма пĕлнинче. Чăваш писателĕсем (ӳнерти лару-тăру лайăххах), манăн шухăшăмпа, юлашки 10–15 çулти улшăнусене ăнланса çитерейменççĕ. Вĕсем таçта хыçа юлнă.

**– Йывăр лару-тăрура ЧНКна ертсе пыраканне мĕнлерех куратăр? Сире хăвăра çĕнĕрен «руль» умне тăма чĕнес пулсан?**

– Гераклит тахçан: «Пĕр юхан шыва икĕ хут кĕмеççĕ», – тенĕ. Эпир тахçан унта пулнă...

Паянхи ЧНК ертӳçисен ĕçне курсах каймастăп, ытлашши вăрттăн ĕçлеççĕ-и? Калама йывăр. Паянхи ЧНК тытăмĕ урăхларах пулмалла. Пĕтĕм ĕçшĕн пĕр çын çеç яваплă тĕрĕс мар пулĕ. Мăн Канаш йышне тĕрлĕ шухăшлă, ăслă-тăнлă çынсене явăçтармалла. Демократи принципĕсене пĕтерме памалла мар. Нумай тĕрлĕ шухăшлăх лайăххах.

*ЧНК чăмăртаннă вăхăтра пире националист тетчĕç. Пире халĕ шăпах çавă çитмест. Ун пĕлтерĕшне суя национализмпа (чăвашăн чăваш юлташ-хурăнташ тенешкеллипе) пăтраштармалла мар. Кашни чăваш юлташ пулма пултараймасть. Чăн-чăн национализм вăл – патриотизм, чăваш халăхне юратни.* Тăван халăх ячĕпе пархатарли мĕн те пулин тума тăрăшни – питĕ кирлĕ япала. Халĕ чăваш националисчĕсем курăнмаççĕ. ЧНК ертӳçисене çакă çитмест.

Надежда СМИРНОВ калаçнă.
*«Хыпар», 15.03.2005, 47№.*

## ЫРРИ САХАЛ МАР, ПУРНĂÇЛАМАЛЛИ ТАТА ЫТЛАРАХ

*ЧНК VI Аслă пухăвне килнĕ йăхташăмăрсемпе республикăри паллă çынсенчен вĕсем Чăваш наци конгресĕн ĕçне мĕнле хакланине ыйтса пĕлес терĕмĕр.*

**А.А. Кудряшов, Самар облаçĕнчи Шунтал район администраци пуçлăхĕн çумĕ:** Чăваш наци конгресĕн VI Аслă пухăвĕ, манăн шухăшăмпа, пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнчех – пултарулла юрăçăн Вячеслав Христофоровăн пултарулăх касĕнчех – пуçланчĕ. Мĕнле савăнса, хĕпĕртесе пăхса лартăм унăн концертне. Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Васильевич Федоров çав кас сăмах калани епле мăнаçлантарчĕ тата! Чăваш пурăнать, чăваш малалла утать. Чăваш наци конгресĕн тӳпи çак туртăмра пĕчĕк мар. Ара, ЧНК хистенипе, сĕннипе мар-и Вячеслав Христофоров Самар облаçĕн ял-хулисенче çĕр-çĕр концерт кăтартса савăнтарнă, унти чăвашсене наци юхăмне хастар хутшăнма хистенĕ.

Чăваш юрри-кĕввипе савăнтарни, паллах, питĕ аван. Çапах та Чăваш наци конгресĕн чăваш районĕсемпе, ялĕсемпе, чăвашсем йышлă пурăнакан облаçсемпе, республикăсемпе экономика тĕлĕшĕнчен çыхăнусем тытас, унти вĕрентӳ, йăла-йĕрке, пурнăç условийĕсене лайăхлатас ыйтусене татса пама пулăшассине те кусран вĕçертмелле мар тесе шутлатăп.

**А.И. Волков, Мускаври чăваш культура обществин çум председателĕ:** Чăваш наци конгресĕ пухакан кирек хăш мероприятие те – Мăн Канаш ларăвĕ-и вăл е Аслă пуху–и – Мускавран Шупашкара пысăк хавхаланупа тухса килетĕп. Унта тĕнчипе саланнă чăвашăмăрсене куратăп, вĕсемпе тĕл пулса калаçатăп, чунра мĕн пуррине уçса паратăп, чăвашăн малашлăх кунĕ пирки сăмах ваклатăп-çке.

Конгресс ĕçĕнче ырри сахал мар. Çапах та ăна тата пуçарулăрах, хастартарах ĕçлеттерес килет. Акă, эпир, Мускаври чăвашсем, пур чухне те унăн пулăшăвне курмастпăр. Тутарсен, мордвасен, пушкăртсен тата ытти наци çыннисен хăйсен суту-илу центрĕсем, кĕтесĕсем, ĕçлеме, канма уйрăм вырăнсем пур. Азербайджансене, ав, «Баку» кинотеатр парнелерĕç. Мускавра йышлă пурăнакан, Раççейре йышпа 5-мĕш вырăнти чăвашсен нимĕн те çук. Çакăнта Конгресăн хăйĕн хăюлăхне кăштах кăтартмалла мар-и вара!?

**Нина Артемьева, поэтесса:**

*Шăнкăр! кăна шăнкăр! шывсем юхаç,*
*Шыв куркине ăçтан тупам-ши?*
*Çакăнтаях килнĕ хăна-вĕрле,*
*Çемçе чĕлхе ăçтан тупам-ши?*

Ахальтен килмерĕ халăх юрринчи çак çаврăм чĕлхе çине. ЧНКн черетлĕ съездне пухăнакан кашни чăваша, кашни делегата кăмăллăн кĕтсе илсе ăшшăн саламлас килет. Вĕсем, аякра пурăнакан чăвашсем, тăван чĕлхешĕн, Чăваш çĕр-шывĕшĕн мĕн тери тунсăхланине аван пĕлетĕп. Хам та Чăваш Республикин тулашĕнче кун çути курса ӳссе çитĕннĕ, çак ыратупа юратăва чăтса ирттернĕ. Çавăнпа та чăвашлăх ячĕпе йĕркелекен кашни ĕçе сăнасах тăратăп, май килнĕ тарăн хутшăнма тăрăшатăп.

**А.И. Иванов, Иркутск облаçĕнчи чăвашсен «Юлташ» наци культура автономийĕн председателĕ:** Пĕр пытармасăр паян çакна калама пултаратăп: темиçе çул каялла чăвашлăх юхăмĕ çапла çĕкленессе эпĕ тем пек хистесе çирĕплетнĕ пулсан та ĕненес çукчĕ. Халĕ вара савăнатăп – ĕмĕт чăн пулса тăчĕ. Иркутск облаçĕнчи кирек хăш влаç структуринче те чăваш автономийĕн представителĕсене хисепе хурса йышăнаççĕ, пирĕн сĕнӳсене, ыйтусене пурнăça кĕртме, пулăшма тăрăшаççĕ. Епле мăнаçлăн иртеççĕ чăвашсен Акатуйĕ тата ытти уявĕсем.

Çитес вăхăтра Иркутск облаçĕнчи чăвашсен этнографи музей-çуртне туса хута ярăпăр, Новолетники ялĕнче чăваш чĕлхипе историне вĕрентекен класа компьютерпа тивĕçтерĕпĕр, Иркутск чăвашĕсем пирки ятарлă кĕнеке кăларăпăр тата ытти те.

Чăваш наци конгресĕпе çыхăну тытатпăр. Çапах ăна çителĕксĕр тесе шутлатăп. Чăваш кĕнекисемпе, Чăваш Республикинче кăларакан таварсемпе ытти облаçсене тивĕçтерессишĕн, вĕсене рекламăлассишĕн чи малтан ЧНКн тăрăшмалла тесе шутлатăп. «Чăваш тĕнчи» хаçата Иркутск облаçĕнчи чăвашсем питĕ юратса йышăнчĕç, ăна чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Хаçат корреспонденчĕсем пирĕн облаçри чăвашсем патне килессе шанатпăр.

**Николай Адĕр, пайтаçă:** Ĕç тухăçлăхĕ ертӳçĕрен нумай килет. Ман шутпа, Конгресăн ялан ĕçлекен кĕрекине (Президиумне) чăвашлăхшăн вăй хуракан общество, творчество организацийĕсен, тĕрлĕ фондсен ертӳçисене кĕртмеллех. Паллах, вĕсене уççăн сасăласа çирĕплетмелле.

Ялан ĕçлекен ертӳçе «президент» теме чарăнмалла. Çӳлте асăннă шутран хăйсен хушшинчен тăратмалла. Ертӳçе икĕ çуллăха кăна суйламалла, унтан – улăштармалла. Мĕншĕн тесен кашни общество организацийĕнче çĕр-çĕр чăваш хастарĕ ушкăнпа тĕрлĕ идейăсем, пуçарусем, сĕнӳсем çуратать.

**Тимĕр Акташ, ЧНК Мăн Канашĕн членĕ:** ЧНК ертӳçисене «ротацилемелле» тесе шутлатăп, ку – демократин пĕлтерĕшлĕ принципĕсенчен пĕри. Урăхла май çук, ертӳçĕ «мăкланма» пултарать, хăйĕн таврашĕнчи юлташĕсене кăна ăшă пукан çине лартать. Çакăн пек «чир» ЧНКра та пур. Пĕлтĕр Чăваш Енĕн тĕрлĕ хаçат-журналĕнче ун пирки критика материалĕсем пичетленсе тухрĕç.

Хальхи вăхăтра ЧНК президенчĕн должноçĕ кирлĕ-и? Çак должноçа 1992 çулта çирĕплетнĕ. Ăна малашне Чăваш Республикин Президентне суйлас тесе тунă. Тĕп кандидат та пулнă – Атнер Хусанкай. Вăл 1991 çулхи раштав уйăхĕнче ЧР Президент суйлавĕнче 46,4 процент сасă пухнă.

Çав вăхăтра Чăваш Енре урăх лару-тăруччĕ. Халĕ – пачах урăхла. Пире чăваш халăхĕн коллективлă ăс-хакăлĕ кирлĕ. ЧНК тĕп чиновникĕ ертсе пыни мар.

**Светлана Асамат, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, поэтесса, композитор:** ЧНКн чăваш халăх пурнăçĕн шăнăрĕ пулса тăмалла. Шăнăрсăр япала – йăмшак. Çавăнпа та манăн ЧНКна вăйлăрах курас килет. Çулсерен эстрада юррисен «Кĕмĕл сасă« конкурсне ирттерсе пыни – питĕ лайăх япала, вăл аякри чăваш çамрăкĕсене пĕрлештерет. Хăш-пĕр чухне вĕсем килсе юрлакан юрăсем професси шайĕпе тивĕçтерсех каймаççĕ пулсан та – вĕсем хăйсен пурнăçĕнче кунта килсе чăвашла юрлани питĕ кирлĕ. Чăваш чĕлхине шкулсенче йĕркеллĕ вĕренме вĕсен майĕсем çукрах пулсан та – Чăваш тĕнчине кĕни те пирĕншĕн питĕ хаклă. Çапах та ЧНК ĕç-пуçĕ вăйлансах кайтăр тесен пысăкрах шайра ĕçлемелле.

Чăваш диаспоринче наци культура центрĕсем уçни, тем пек йывăр пулсан та – чăваш хаçачĕсем тухса тăни, чăвашла телерадио кăларăмсем йĕркелени, чăваш Акатуйĕ, спорт вăййи ирттерни – чăвашлăхшăн тăрăшса ĕçленине пĕлтерекен пулăмсем.

Хурламастăп та, ырламастăп та. ЧНК ĕçченĕсем йăнăшаççĕ те, тăрăшаççĕ те. Малалла тата хĕрӳллĕрех, ăнăçлă ĕçлеме сăвапĕ те, хăвачĕ те çитсе пытăр. ЧНКн Аслă пухăвĕнче хăш-пĕр ыйтăва сӳтсе явнă чухне хамăр хушăрах пĕрлĕх çитменни питĕ хумхантарать.

Н.СМИРНОВА, Л.САЧКОВА ыйтса пĕлнĕ.
*«Хыпар», 18.03.2005, 50№.*

## ХАЛĂХПА ПУРĂНАКАН ХАЛСĂР МАР

Чăваш наци конгресĕн Патăрьел районĕнчи уйрăмне 12 çул ертсе пынă май Конгресăн Аслă пухăвĕ умĕн хăш-пĕр шухăшăма уçса парасшăн. Конгресс ĕçне халăхпа пĕр чĕлхе тупса туса пымалла, çынсене тĕрлĕ ĕçе явăçтарма пĕлмелле, тăрăшмалла. Паллах, ку енĕпе районти шкулсенчи чăваш чĕлхипе литературине, чăваш халăх историпе культурине вĕрентекенсем, клубсемпе библиотекăсенче вăй хуракансем, музей, хаçат ĕçченĕсем, ветерансем пысăк пулăшу кӳреççĕ. Уйрăм ушкăнпа чăваш чĕлхи çинчен, ăна сыхласа хăварас тĕллевпе калаçусем ирттеретпĕр, аслă классенче вĕренекенсене те хутшăнтаратпăр е хамăр районти юрăпа ташă ăстисемпе, фольклор ушкăнĕсемпе республика тулашĕнчи чăвашсем патне тухса çӳретпĕр.

Юлашки 10 çулта кăна ял, колхоз, завод, шкулсен историне тĕпчесе кĕнеке кăларас ĕçе ветеран-çыравçăсене явăçтартăмăр. Николай Петрович Тельцов (Пăлапуç Пашьел) ял, чиркÿ, колхоз, шкул историне тĕплĕн тĕпчесе 2 кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Геннадий Федорович Мулюков (Туçа), Иван Николаевич Ильин (Чăваш Сăкăт), Виталий Владимирович Владимиров (Патăрьел), Иван Яковлевич Тенюшев (Алманчă), Ксенофонт Емельянович Лекарев (Çĕнĕ Ахпӳрт) хайсен ял историне тĕплĕн çырса кĕнекесем пичетлерĕç. Çак кĕнекесене те ял халăхĕпе сӳтсе явнă.

Чăваш чĕлхи пуянлăхне туйма, вĕрентме тăрăшаççĕ шкулсенче. Туçари, Аслă Арапуçĕнчи, Нăрваш Шăхалĕнчи, Çĕньялти, Турханти, Кивĕ Ахпӳртри, Патăрьелĕнчи вăтам шкулсенче литература, çамрăк çыравçăсен кружокĕсем ăнăçлă ĕçлеççĕ. Районта, республикăра иртекен тĕрлĕ олимпиадăсемпе конкурссене çак шкулсенче вĕренекенсем яланах малти вырăнсене йышăнаççĕ. Владимир Антонов ертсе пынипе пĕр çулхине Кăнна Кушки ялне кайрăмăр. Ял çумĕнчи уйра Атăл тăрăхĕнчи чăвашсен Акатуйне хутшăнтăмăр. Конгресăн районти уйрăмĕ çумĕнче икĕ ансамбль тытма вăй çитеретпĕр: «Шуçăм» (ертӳçи Валерий Фролов) халăх ятне илнĕ фольклор ушкăнĕ. «Асамат» ушкăн та вăй илсе пырать. Çак коллективсемпе Ульяновск хулине, облаçри чăвашсем пурăнакан ялсене, Тутарстанри чăваш ялĕсене çитсе тăвата концерт кăтартрăмăр. «Çăлкуç» фольклор ушкăнĕ Самар тăрăхĕнчи ялсенче, Тольятти хулинче пулчĕ. Çакăн пек çӳреме хальхи вăхăтра çăмăлах мар, çапах та пирĕн ĕçе хуçалăх, предприяти ертӳçисем вырăна хураççĕ, пулăшаççĕ. Пĕр сăмахпа, укçа, транспорт, бензин çук тесе лармастпăр, палăртнă ĕçсене туса пыратпăр.

Чăваш хаçачĕсен тиражĕсем чакса пыраççĕ. Çак пулăма тĕплĕн тишкерес тĕлĕшпе районта чăваш хаçачĕсене сарас ĕç мĕнле пынине сăнарăм. Мĕн патне çитсе тухрăмăр? Районти 14500 киле 16 пин экземпляр хаçат-журнал килсе тăрать, çакă республикăри вăтам кăтартуран лайăхрах. Первомайски, Аслă Чемен, Туçа çыхăну уйрăмĕсем лайăхрах ĕçлеççĕ.

Çамрăксене ялта вĕреннĕ çулсенчех чăвашла вулама хăнăхтармалла. 300–400 е ытларах ача пĕлӳ илекен шкулсенче те чăваш хаçачĕсем çук. Тĕп чăваш шкулĕсенче пухусене, уявсене вырăсла ирттереççĕ, кăритурсенче, классенче чăвашла плакатсем, стендсем çук.

Чăваш наци конгресне ертсе пыракансене çапла сĕнес килет: республикăра та, тулайра та чăваш халăхне, чĕлхине, йăли-йĕркине чунтан хисеплекен пултаруллă ертӳçĕсем, предпринимательсем сахал мар. Çавсемпе пĕр чĕлхе тупса Конгресс çумĕнче уйрăм фонд уçмалла. Пухăннă укçа ăçта каймаллине ĕç планĕпе палăртса хумалла, вăл операцисем куçăмлă пулмалла. Укçа çук тесе кирлĕ мероприятисенчен аякра юлмалла мар.

Иван ПАХОМОВ. Патăрьел районĕ.
*«Хыпар», 18.03.2005, 50№.*

## ПАЯН ШУПАШКАРТА ЧНК VI АСЛĂ ПУХĂВĔ ĔÇЛЕТ

*Ĕнер Правительство çуртĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ* ***Н.В. Федоров*** *Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенчи чăваш наци культура пĕрлешĕвĕсен ертӳçисемпе (вĕсем ЧНК VI Аслă пухăвне килсе çитнĕ) тĕл пулчĕ. Унпа пĕрлех «çавра сĕтеле» ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ* ***М.А. Михайловский****, ЧР культура, информаци политикин тата архив ĕçĕн министрĕ П.С. Краснов, ытти министрсем, аслă вĕренӳ заведенийĕсен ректорĕсем, массăллă информаци хатĕрĕсен ертӳçисем хутшăнчĕç.*

Николай Васильевич инçетри сывăх тăванăмăрсемпе куçа-куçăн калаçма хавас пулнине пĕлтерчĕ, республикăра юлашки çулсенче туса ирттернĕ ĕçсемпе паллаштарчĕ. Чăваш халăхĕн пысăк пайĕ яллă вырăнта тĕпленнине шута илсе ял хуçалăхĕпе çыхăннă ыйтусем пирки те чарăнса тăчĕ. Президент ыйтнипе ЧР ял хуçалăх министрĕ **М.В. Игнатьев** нумаях пулмасть вăя кĕнĕ указпа – «Ялсене производство сферинче ертсе пыракан кадрсемпе тивĕçтерессине патшалăх хушма пулăшу параcси çинчен» документпа – паллаштарчĕ. Çĕр-шыв тăрăх сапаланса пĕтнĕ йăхташăмăрсенчен чи пултаруллисене тăван кĕтесне илĕртме те пулăшĕ, тен, çак Указ?

Унтан хăнасем сăмах илчĕç. Тем те канăçсăрлантарать, шухăшлаттарать, савăнтарать вĕсене.

Эстонири чăваш культурин обществин председателĕ **И.В. Захарова**: «Пирĕн обществăна йĕркелесе янăранпа кăçал 15 çул çитет. Çавна май юлашки вăхăтра ĕçсем пĕтĕмпех савăнăçлă çак мероприятие ирттерессипе çыхăннă. Пире унти влаç ăнланма тăрăшать, пулăшса пырать. Сирĕн, Николай Васильевич, Чăваш Енпе Эстони хушшинчи çыхăнусене çирĕплетес тĕлĕшпе шухăшăр мĕнле?»

Хуравне Н.В. Федоров çийĕнчех парса пычĕ. «Эстони ертӳçисен шухăшĕсем пирĕннине çывăх. Сĕнӳ пирки шухăшласа пăхмалла», – терĕ.

Пушкăртстанри **И.Г. Тарасов тележурналиста** Чăваш Республикине Киров облаçĕпе пĕрлештерме пултараççĕ текен сас-хура канăçсăрлантарать. Ун пирки Николай Васильевич акă мĕн пĕлтерчĕ: «Эпир Киров облаçне хамăр йыша илме хатĕр, анчах та Чăваш Ене ун йышне кĕме памастпăр».

Тутарстанри чăваш наци культура автономийĕн председателĕн **К.Г. Яковлевăн** шухăшĕпе – тĕрлĕ енлĕн, туллин çыхăнса ĕçлеме Тутарстанра Чăваш Республикин полномочиллĕ элчи пулни пулăшĕччĕ. Ульяновск облаçĕнчи чăваш наци культура автономийĕн председателĕ **В.И. Сваев** Ульяновскра И.Я. Яковлев палăкне уçассипе тата 2008 çулта Аслă Вĕрентекенĕмĕрĕн 160 çулхи юбилейне паллă тăвассипе çыхăннă ыйтусем, Пушкăртстан чăвашĕсен «Канаш» ĕçтăвкомĕн председателĕ **Г.П. Шушпанов** Пушкăртстанра Чăваш Ен кунĕсене ирттерессипирки калаçрĕç. «Самар Ен» хаçат редакторĕ **Н.В. Давыдов** облаçри шкулсенче чăваш чĕлхине вĕрентме пăрахнишĕн пăшăрханнине пĕлтерчĕ. Красноярск тăрăхĕнчи ентешсен саламне унти чăваш наци культура автономийĕн председателĕ **Г.И. Храмов** илсе çитерчĕ. Вĕсем хăйсен сайтне йĕркеленĕ-мĕн. «Çакăн усси пурах, – терĕ вăл. –Пире халĕ Грецире те пĕлеççĕ».

«Çавра сĕтеле» хутшăннисенчен тухса калаçакансем татах пулчĕç. Н.В. Федоров вĕсене пурне те тимлĕн итлерĕ, ыйтăвĕсене хуравларĕ. «Сирĕнпе пĕрле ĕçлемелли нумай. Ыран та çав ыйтусем таврах калаçăпăр. Çакăн пек час-часах тĕл пулни çĕнĕ çитĕнусем тума, çивĕчленсе çитнĕ ыйтусене татса пама пулăшать», – терĕ Президент.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 19.03.2005, 51№.*

## ПУХУРА КАЛАÇНИ АН ПУЛТĂРЧЧĔ АХАЛЬ

*Раççейĕн вун сакăр регионĕнчен тата чикĕ леш енчи тăватă çĕршывран килсе çитнĕ йăхташăмăрсем (пурĕ 320 делегат тата 160 хăна) хутшăнчĕç Чăваш наци конгресĕн VI Аслă пухăвне. Вăл иртнĕ шăмат кун Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче ĕçлерĕ. Делегатсем ăçтан пулнине, вырăнти лару-тăру мĕнлине кура вĕсене канăçсăрлантаракан ыйтусем те çавсемпех çыхăннă ĕнтĕ. Çапах та пĕр пĕтĕмĕшли – тăван халăх шăпи, чĕлхи, культури, вĕсен пуласлăхĕ – пурне те пĕтĕçтерсе тăчĕ.*

Пĕтĕм чăвашсен Аслă пухăвĕ тăванлăхпа пĕрлĕх уявĕ пулнине çирĕплетсе ЧНК Ваттисен Канашĕн хастарĕсем – **Никифор Наумов** мăчавăр, СССР халăх артистки **Вера Кузьмина** тата Ваттисен Канашĕн пуçлăхĕ **Анатолий Кибеч** Аслă пухăва пехил пачĕç, пулас кунăн тупсăмне вăрçă-хирĕçӳпе мар, пĕр чĕлхе тупса татса пама ыра сунчĕç.

Чăваш тĕнчин элчисене Чăваш Республикин Президенчĕ **Н.В. Федоров** саламларĕ, сăмах каларĕ. Николай Васильевич ЧНКн паянхи тĕллевĕсем пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Президент культура, чăвашлăх ĕçĕнче палăрнă йăхташăмăрсене В.А. Прохорова (Хусан), В.А. Федотова (Казахстан, Павлодар) «ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят пачĕ.

Икĕ пуху хушшинчи ĕç-хĕл пирки ЧНК президенчĕ **Г.Н. Архипов** доклад турĕ. Чăваш наци конгресĕ общество организацийĕ çеç пулсан та чылай

ĕçе, проекта пурнăçа кĕртме пултарнă. Вăл çине тăнипех эстрада юррисен «Кĕмĕл сасă» конкурс-фестиваль йĕркеленсе çирĕпленчĕ. ЧНК çумĕнче çуралса вăй илнĕ «Чăваш кĕрешĕвĕ» халь хăй тĕллĕн ĕçлекен организаци шайне çĕкленчĕ. Конгресс çавăн пекех чăваш çемйисен несĕлĕсен, йăх йывăççисен конкурсне йĕркелерĕ. Республикăра ентешлĕхсемпе, ЧНКн вырăнти организацийĕсемпе, регионсенчи чăваш наци автономийĕсемпе, пĕрлешӳсемпе, центрĕсемпе çыхăну тытса ĕçлет. ЧНК делегацийĕсем икĕ çул çурăра ăçта кăна çитсе килмен: Тюмень, Тутарстан, Чĕмпĕр, Пушкăртстан, Эстони, Оренбург, Мускав, Чулхула, Иваново, Пенза, Самар, Тольятти, Питĕр, Архангельск...

Геннадий Николаевич çавăн пекех чăвашлăх ĕçĕнче лайăх енĕпе палăрса тăракан хутлăхсене те палăртрĕ: Мускав, Таллинн (Эстони), Санкт-Петербург, Хусан, Ĕпхӳ... Вице-президентсен ĕç-хĕлне тишкернĕ май А.П. Леонтьев, В.А. Тимофеев, В.А. Иванов, В.А. Абрамов хăйсен енĕпе яваплăхпа туйса ĕçленине палăртрĕ. ЧНК çумĕнчи Вячеслав Христофоров ертсе пыракан «Янра, юрă» ушкăн инçетри тăванăмăрсем патĕнче çĕр-çĕр концерт кăтартнă.

– Çакă çеç пăшăрхантарать. Хамăр валли укçа-тенкĕ тупса, çуртйĕр çавăрса, ăна патшалăх пулăшăвĕсĕр, темле йывăр пулсан та, тытса тăратпăр. Хăш-пĕрне пирĕн алăри кукăль çав тери пысăккăн курăнать пулмалла, – терĕ Г.Н. Архипов. – Темле сас-хура та кăлараççĕ. Сăмахран, ЧНК Культура министерствин пĕр пайĕ пулса тăчĕ тесе йĕкĕлтешеççĕ. Эпир савăнатпăр çеç уншăн. Бюджетран шалу илсе тăмасăрах министерствăн пĕр пайĕ чухлĕ общество майĕпех ĕçлеме пултаратпăр пулсан – йĕркеллĕх эппин.

**Г.Н. Архипов** малашлăхра пурнăçламалли ĕçсем пирки чылай чарăнса тăчĕ. Вĕсенчен пĕри – чăваш халăхĕн историне тĕплĕн çырасси. «Тав В.В. Николаев профессорпа В.П. Иванова, – терĕ ЧНК президенчĕ. – Чăваш историйĕпе, тумĕпе, йăх-тымарĕпе самай пысăк ĕçсем тунăшăн». Шупашкар 750 çулта пулнине йышăнса çирĕплетесси те, тĕп хула вырăсланса, акăлчанланса пыни те, Атăлçи Пăлхар патшалăхĕ 1100 çул тултарнине паллă тăвасси те тата ытти те ЧНК хастарĕсене пăшăрхантарни пирки туйса илтĕмĕр.

**Вице-президентсен – А.П. Леонтьевăн, В.А. Тимофеевăн** – çум доклачĕсенче те палăрчĕç çав шухăшсем. Тĕслĕхрен, А.П. Леонтьева, «Хыпар» Издательство çурчĕн генеральнăй директорне-тĕп редакторне, 2002 çулхи çырав хыççăн тăван чĕлхипе калаçман 455 пин чăвашăн шăпи канăçсăрлантарать. Мĕн тумалла? Вĕсем валли чăвашлăх темисене çутатакан кăларăмсем кирлĕ терĕ. VI Аслă пуху умĕн кун çути курнă «Чăваш тĕнчи – Чувашский мир» чăвашла-вырăсла хаçат шăпах çавăн йышшисенчен пĕри пулĕ те.

В.А. Тимофеев вара чăваш ачисене пĕчĕкрен спортпа туслаштарма кирлине палăртрĕ. Ку енĕпе хăй мĕнле ĕçленипе паллаштарчĕ. Регионсенчи чăваш наци автономийĕсенче те спорт енĕпе ĕçлекен комитетсем йĕркелеме сĕнчĕ.

Аслă Пухура 30 çын ытла сăмах илчĕ. Ытларахăшĕ – республика тулашĕнчен килсе çитнĕ йăхташăмăрсем. Кашнин хăйĕн савăнăçĕ, ыратăвĕ. Паллах, паянхи отчетра пурин сăмахне те илсе кăтартма май килмĕ. Вĕсемпе хаçатăн «Чăваш тĕнчи» ятарлă кăларăмĕнче усă курăпăр. Халĕ вара тухса каланисенчен хăш-пĕрин сăмахĕсемпе, сивĕч шухăшлисемпе, пурне те пырса тивекеннисемпе, тавлашу сĕмĕпе палăраканнисемпе паллаштарас тетĕп.

**В.Д. Калмыков (Самар)** чăваш шкулĕсене хупнине татăклăн сивлерĕ. Çак шухăшах эрне кун диаспорăри наци культура пĕрлешӳсен ертӳçисем ЧР Президенчĕпе Н.В. Федоровпа тĕл пулнă чух «Самар ен» хаçат редакторĕ **Н.В. Давыдов** хускатнăччĕ. Ун чухне Николай Федоров питĕ ăнланмалла хуравланăччĕ. Анчах та тепĕр кун каллех çĕкленчĕ ку ыйту. Çавна май ЧР Президенчĕ чăтса тăраймарĕ ахăр, çĕнĕрен трибуна умне тухрĕ.

– Мана чăваш халăхне çăлса хăварма май паракан вăйлă политика кирлĕ, – терĕ. Вăл Чăваш Енре вĕрентӳ ĕçне çĕнетекен федераци программи пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Кивĕ, сахал ача вĕренекен шкулсенче пĕр ача пуçне хальхи вăхăтри шайри шкулсемпе танлаштарсан 6–10 хут ытларах укçа тăкакланнине асăнчĕ. Чăваш ачисем ыттисенчен нихăш енĕпе те начар ан пулччăр тесен паянхи кун вĕсем техника прогресĕнчен нихăш енĕпе те юлса пыман шкулсенче вĕренмелле. Çитĕнӳсем те çук мар. Тĕслĕхрен, вунă çул каялла Мускаври экономикăн аслă шкулĕнче чăваш ачисем 10 ачаран ытла пулман, халĕ унта 52 ача пĕлӳ илет. Раççейри сумлă ытти вĕренӳ заведенийĕсенче те пирĕн ачасем йышлă.

**В.Н. Логинов (Тюмень)** ЧНКн икĕ Аслă пухăвĕ хушшинчи ĕçе начар мар терĕ. Çапах та ун витĕмне тата вăйлатма пулать. Мĕнле майпа? Семинарсем, симпозиумсем йĕркелесе. Тюменьре чăвашсем сумра пулни куç умĕнчех. Сăмахран, унти наци культура пĕрлешӳсен (25 вĕсем) координаци канашне ертсе пыма шăпах В.Н. Логинов чăваша шаннă.

**В.П. Эктел** çыравçă ЧНК юлашки вăхăтра çыравçăсемпе çителĕксĕр çыхăну тытнине палăртрĕ. Конгресăн ку таранччен пичет органĕ пулманнине сивлерĕ. ЧНК хастарĕсене çавăн пекех хайсен ĕçне ӳнерçĕсене те явăçтарма сĕнчĕ.

**А.П. Гаврилов (Анат Кама, Тутарстан)** хăй ертсе пыракан чăваш гимназийĕн ĕçĕпе паллаштарчĕ. Тĕллевлĕ ĕçĕн витĕмĕ те пурах терĕ вăл. Унтан вĕренсе тухакан ачасенчен 80–85 проценчĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсенче пĕлĕвне малалла туптать, çав шутра ЧПУра та йышлăн вĕсем.

ЧНК Уставне сӳтсе явма та йышлăн хутшăнчĕç. Чылайăшĕ унта улшăнусем кĕртмеллине палăртрĕ. Шăпах çакăн чухне ЧНКн оппозицири çыннисем – **В.Г. Тяпкин, А.П. Капитонов, В.П. Станьял, С.И. Васильев** – хăйсен шухăшĕсене уççăн пĕлтерчĕç. ЧНК президентне суйланă чухне те палăрчĕ çакă. ЧНКна çĕнĕ çын, паянхи ертӳçĕрен вăйлăраххи ертсе пыма тивĕçлĕ терĕç. Анчах та делегатсен питĕ пысăк пайĕ **ЧНК президентĕнче Г.Н. Архиповах курас терĕ, ăнах суйларĕ.**

Резолюцисем йышăннă, ЧНК ертсе пыракан органĕсене (президентсăр пуçне тата Мăн Канашпа Ваттисен Канашĕн йышĕсене) суйланă, чăваш халăхĕн гимнне – «Алран кайми аки-сухи» – юрланă хыççăн Аслă пуху хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Унтан «Кĕмĕл сасă» конкурс-фестивалĕн тĕрлĕ çулсенчи çĕнтерӳçисен тата чăваш эстрада юрăçисен пĕрлехи концерчĕ пулчĕ.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 22.03.2005, 52–53№.*

## ЧĂВАШ НАЦИЙĔ – ТЫМАРСЕН ПĔРЛĔХĔ

**Чăваш Ен Президенчĕ Н.В. Федоров 2005 çулхи пуш уйăхĕн 19-мĕшĕсенче иртнĕ Чăваш наци конгресĕн VI Аслă пухăвĕнче каланă сăмах**

Хаклă ентешсем, хисеплĕ хăнасем!

Сире, пирĕн ентешĕмĕрсене, чăваш наци культура пĕрлешӳсен ертӳçисене, Раççей Федерацийĕнчи чăвашсем йышлă пурăнакан субъектсенчен тата ют çĕр-шывсенчен килнĕ хăнасене Чăваш çĕрĕ çинче саламлама питĕ хавас.

Чăваш наци конгресĕн V съезчĕ пулнăранпа икĕ çул çурă иртрĕ. Çак тапхăр пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсемпе асра юлчĕ.

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В.В. Путин Чăваш Республикинче пĕлтĕр, иккĕмĕш хут пулнă чухне, çĕр-шыври социаллă пурнăçпа политикăри ĕçсене тишкерсе, Чăваш Ен Раççейре тăнăçлăхпа тата аталану ӳсĕмĕн хăвăртлăхĕпе уйрăлса тăнине палăртрĕ.

Раççей Президенчĕ палăртнă тăнăçлăх çут çанталăк парни мар, ялан тĕллевлĕ ĕçленин кăтартăвĕ. Республика малалла çирĕппĕн тата хăвăрт утăмсемпе аталанать, Раççейри регионсемпе ытти çĕр-шывсем унпа ытларах та ытларах интересленеççĕ. Чăваш Ене ют çĕр-шывсенчен ĕçлĕ делегацисем нумай килеççĕ.

Республикăна ертсе пыракансен ĕç-хĕлĕ Чăваш Енĕн экономика вăй-хăватне ÿстерессипе, унăн культурине аталантарассипе çыхăннă.

<...> Чăваш халăхĕн хăйсене евĕрлĕхĕ çакăнта: унăн истори тымарĕсем 5 пин ытла çула тăсăлаççĕ, вăл вăрçăсене тата куçса çÿренине пăхмасăрах çухалман. Пирĕн ăрăвăн тĕллевĕ – историлле тивĕçе малалла пурнăçласа пырасси, чĕлхене, йăла-йĕркене тата та ытларах пуянлатса çитес ăрусене парасси. Çакăнта чăвашсен кăна мар, республикăра тата Раççей Федерацийĕнче пурăнакан ытти халăхсен интересĕ. Пĕр чĕлхеллĕ лару-тăрура пурăнма çав тери пĕр евĕр, кичем пулĕччĕ, вăл пуш хирте пурăннине аса илтерĕччĕ.

Чăваш Республикине ертсе пыракансем хăйсен наци культурине аталантарас енĕпе пурнăçламалли тĕллевĕсене лайăх пĕлеççĕ. Çак ĕçе халăхăн хăйсене евĕрлĕхĕн тĕп пайĕсене – чĕлхене, культурăна, халăх сăмахлăхне, йăли-йĕркине пуянлатасси, историе вĕренесси, тарăн шухăшлă, хитре альбомсемпе кĕнекесем кăларасси кĕрет. Кашни çул-йĕрпех сахал мар ĕç туса ирттеретпĕр. Чăваш тĕрĕ ăстисен ĕçĕсен куравĕсем пĕрмаях пулаççĕ. Тĕрĕ, эсир ăна пурте пĕлетĕр, чăваш халăхĕн наци искусствин тĕп пайĕ.

Халăх йăли-йĕрки çинче никĕсленекен ку чухнехи чăваш моди аталанать. 2004 çулта Шупашкар художник-модельерĕ Любовь Вдовичева Мускавра модельерсен Тĕнчери конкурсĕнче çĕнтерчĕ, опытлă жюри членĕсем вăл хатĕрленĕ чăваш туй кĕпине курса тĕлĕнчĕç, пысăк хак пачĕç. Пĕлтĕрех Шупашкарти Ольга Афимьина художник-керамист Скопин хулинче (Рязань облаçĕ) ирттернĕ тăм савăт-сапа искусствин Тĕнчери конкурсĕнче çĕнтерчĕ.

Чăваш юрри-кĕввине, ташшисене Раççей тулашĕнче те юратса итлеççĕ, пăхаççĕ, пирĕн фольклор ансамблĕсем Италире, Францире, Испанире, Германире, ытти çĕр-шывра хăйсен пултарулăхĕпе унта пурăнакансене савăнтараççĕ.

«Чăвашсен кĕске энциклопедийĕ» чаплă кĕнеке пичетленсе тухрĕ. Ун пек кĕнекепе Раççейре пурăнакан пур халăх та мухтанма пултараймасть-ха. Энциклопедие «кĕске» тесе каланă пулин те вăл питĕ сумлă, пысăк томран тăрать, унта чăваш тĕнчи çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă. Энциклопедие хатĕрлени ку ĕçе малалла тăсмаллине кăтартса пачĕ. Çавăнпа та халĕ, акă, нумай томлă чăваш энциклопедийĕн пĕрремĕш томĕ кун çути курмалла, кĕнекене 2005 çулта кĕркунне пичетлесе кăлармалла, тиражĕ – 5000 экземпляр. Халĕ ăна çырăнтарас ĕç пырать.

Эпир «Президент библиотеки» ярăм йĕркелерĕмĕр. Ку проект тĕллевĕ – чăваш халăхĕн паллă та пултаруллă çыннисем çинчен каласа парасси. Çак пуçарăва пурте ырласа йышăнчĕç, ĕç малалла пырать, халĕ ку енĕпе çĕнĕ кĕнекесем пичете хатĕрлеççĕ. «Ялав», «Капкăн», «Тăван Атăл» чăваш литература журналĕсен пахалăхĕпе тиражне ÿстерес, литература ĕçне аталантарас тĕллевпе вĕсене рынок условийĕсенче ĕçлеме хăнăхнă чи лайăх «Хыпар» тата «Хресчен сасси» издательство çурчĕсен никĕсĕ çинче пичетлеме тытăннă.

Раççей Федерацийĕн чăвашсем йышлă пурăнакан регионĕсенче ĕçлекен массăллă информаци хатĕрĕсемпе пирĕн республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен хушшинче ĕçлĕ çыхăнусем аталансах пыраççĕ. 2004 çулта Шупашкарта Раççей регионĕсенче чăвашла тухакан массăллă информаци хатĕрĕсен редакторĕсем тата сотрудникĕсем хутшăннипе наци культурин ыйтăвĕсемпе «çавра сĕтел» иртрĕ. 2001 çултанпа Чăваш Республикин Президенчĕн администрацийĕн официаллă серверĕнче республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсем валли материалсемпе питĕ пуян «Диаспора. Чăваш тĕнчи» Интернет-проект ĕçлет, анчах та унпа усă куракан сахал. Çакă пăшăрхантарать. Чăваш Республикин патшалăх наци политикин концепцийĕн кирлĕ пайĕ вăл – чăваш диаспорине пулăшасси. Çак тĕллевсене пурнăçламалли инструментсен шутĕнче вара – Раççей Федерацийĕнчи регионсенче ĕçлекен наци культура пĕрлешĕвĕсем. **Чăваш наци конгресĕн юлашки икĕ съезчĕ хушшинче Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче тата ют çĕр-шывсенче ĕçлекен чăваш наци культура пĕрлешĕвĕсен хисепĕ 55-рен 67 çитрĕ. Вĕсен шучĕ 1996 çулта – 25, 2000 çулта 41 пулнă, 2005 çулта вара – 67. Эппин, темиçе хут ÿснĕ. Çакна лайăх пулăм тесе йышăнмалла.** Шел те, нумай регионта пирĕн ентешсем кĕрекен пĕрлешÿсен вăй-хăвачĕпе хальлĕхе çителĕклĕ усă курмаççĕ. Мускавра, Санкт-Петербургра, Пушкăртстанра, Тюменьте тата ытти хуласемпе республикăсенче, облаçсенче ĕçлекен автономисен лайăх опычĕ çакна кăтартса парать: автономисем вĕсем буфетра пĕрле сăра ĕçсе, тăван чĕлхепе юрă-кĕвĕ итлесе киленмелли ентешсен клубĕсем анчах мар. Автономисем питĕ çивĕч те кирлĕ ыйтусене татса параççĕ. Уйрăммăн илсен – регионсен хушшинче ĕçлĕ çыхăнусене, культура енĕпе кăна мар, экономика çыхăнăвĕсене йĕркелеме, регионсен хушшинчи инвестицисемпе çыхăннă килĕшÿсем тума пулăшаççĕ. Мускавра Раççей Федерацийĕнчи чăваш федераци наци культура автономийĕ хастар ĕçлет. Вăл Раççей халăхĕсен Ассамблейипе тачă çыхăну тытать. Çулленех Мускавра Пĕтĕм Раççейри курав центрĕн территорийĕнче пĕтĕм чăвашсен Акатуйĕ иртет. Вĕсене Раççейри нумай субъектсенчи тата ют çĕр-шывсенчи пултарулăх коллективĕсем хутшăнаççĕ.

Паян чăваш наци культура пĕрлешĕвĕсем Раççей Федерацийĕнчи 27 субъектра тата 6 ют çĕр-шывра ĕçлеççĕ. Вĕсене методика тата ытти енĕпе пулăшу парас тĕллевпе Чăваш Республикин Халăх пултарулăх çуртĕнче видеокассетăсен, методика сĕнĕвĕсен, сценарисен, юрăсен пуххисен ятарлă фондне туса хунă. Вĕсене чăвашсем пурăнакан вырăнсенчи культура учрежденийĕсене çитерсех тăраççĕ.

Чăваш Енри чи лайăх пултарулăх коллективĕсем пĕрмаях чăвашсем пурăнакан вырăнсенче гастрольсенче пулаççĕ. Наци культурипе литературин кунĕсем, уявсем, фестивальсем тата конкурссем професси енчен çÿллĕ шайра иртеççĕ. Сăмахран, пĕлтĕр Раççейри регионсенче театрсемпе концерт коллективĕсем 302 спектакльпе концерт кăтартнă, вĕсене 68 пин çын пырса курнă. Уйрăмах Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Çамрăксен театрĕн, Пукане театрĕн, филармони коллективĕн, юрăпа ташă академи ансамблĕн Пушкăртстан, Тутарстан, Мари Эл республикисен, Самар, Ульяновск, Пенза облаçĕсен районĕсенче ăнăçлă иртнĕ гастролĕсене асăнса хăвармалла. Чăваш Ен специалисчĕсем Тутарстан, Мари Эл республикисенче, Самар тата Ульяновск облаçĕсенче маçтăр-классем, семинар-стажировкăсем, ĕçлĕ тĕл пулусем, каçсем йĕркеленĕ. Тутарстанра Чăваш литературин кунĕсем иртнĕ.

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В.В. Путин пĕлтĕр çак театрта наци культура пĕрлешĕвĕсен, конфессисен представителĕсемпе, искусствăпа культура деятелĕсемпе ирттернĕ ĕçлĕ тĕл пулура Раççей патшалăх тытăмĕн никĕсĕ – нацисен хушшинчи тата конфессисен хушшинчи туслăх – çураçуран килнине, Чăваш Ен вара çак енĕпе тĕслĕх тата модель пулса тăнине палăртрĕ. Мĕншĕн тесен кунта эпир тĕрлĕ конфессисен представителĕсен хушшинче, тĕрлĕ наци çыннисен хушшинче килĕштерсе ĕçлеме лайăх никĕс туса хунă.

«Пускил хурăнташран хаклă», – теççĕ чăвашсем. Халăхсен хушшинчи туслăхра пирĕн вăй пулнине эпир сирĕнпе лайăх пĕлетпĕр.

**2002 çулхи юпа уйăхĕнче Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕ иртрĕ. Вăл пирĕн республикăра 97 наци çынни пурăннине кăтартса пачĕ. (1989 çулта 91 наци çынни пурăннă). Раççей Федерацийĕнчи ытти регионсенче пурăнакан чăвашсен шучĕ икĕ çырав хушшинче палăрмаллах – 118,8 пин çын чакнă. Хамăр республикăра пурăнакан чăвашсен хисепĕ те 17 пин те 600 çын чухлĕ сахалланнă. Пĕр енчен, çакна пĕтĕм Раççей Федерацийĕнчи демографи лару-тăрăвĕпе çыхăнтарма пулать. Юлашки вунă-вун пилĕк çулта çуллен çынсен шучĕ 800 пинрен пуçласа 1 миллиона яхăн чакса пынă. Анчах та ытти сăлтавсем те пулчĕç. Сăмахран, влаç нацисен шутне ÿстерме ирĕк пани. Тата халăха çырса шута илекенсем ку кампанире çакăн пек пулăмпа тĕл пулчĕç: ашшĕпе амăшĕ чăваш, ывăлĕ е хĕрĕ вара хăйсене вырăс тесе çыртараççĕ.**

**Енчен те малтан ачасен нацилĕхне ашшĕ-амăшĕн паспортĕнчи нацилĕхпе палăртнă пулсан, халĕ вара кашни гражданин хăйĕн нацилĕхне хăй палăртать. Çавна пула малтан шутланă пекех пулса тухрĕ: Раççей Федерацийĕнчи регионсенче, çавăн пекех пирĕн республикăра та, ашшĕ-амăшĕн чĕлхине пачах пĕлмен е япăх**

**пĕлекен, хăйсен малашлăхне ытти регионсенчи пысăк хуласенче куракан çамрăк чăвашсен пĕр пайĕ çырав вăхăтĕнче хăйсене вырăс тесе çыртарнă. Çакăншăн тĕлĕнмелли çук.**

Рынок аталаннă май обществăра миграци процесĕсем вăйланаççĕ. Çынсем ĕç шыраса çĕр-шыв, Европа, тĕнче тăрăх час-час куçса çÿреме тытăнаççĕ. Чи кирли – вĕсем тахçанах американсем, АПШ гражданĕсем пулса кайнă ирландсем, итальянсем, китайсем пек хăш ăратран-йăхран, хăш халăхран, чĕлхерен, культурăран пулнине манманни. Çакă питĕ явапллă ĕç!

Пирĕн – авалхи культурăллă тата пуян историллĕ чăваш халăхĕн – юлса пыракансен шутĕнче пулмалла мар. Аталанăвăн тĕп çул-йĕрĕсене политикăра суйласа илнĕ чухне унăн шухăшĕпе интересленекен халăхсен шутĕнче пулни пире – чăваш халăхне – кирлĕ, вăл çакна тивĕçлĕ. Çак ĕçре çăмăл çул çук.

Ку ĕçе пурнăçлас тесен Чăваш наци конгресне ертсе пыракансен Конгреса пĕтĕмĕшле Раççейри организаци евĕрлĕ регистрацилеме тăрăшмалла, ытларах ĕçлемелле.

**Чăваш наци конгресĕ вăл, чăннипе, наци культура автономийĕн форми. Çавăнпа та, ман шутпа, унăн общество шайĕнче чи малтан тата тĕпрен илсен Чăваш Республикин тулашĕнче пурăнакан чăвашсен интересĕсемшĕн тăрăшмалла, унсăр пуçне Конгресăн ĕçне харпăр хăй тĕллĕн туса пыракан управлени тытăмĕ пулмалла («горизонтальпе» те, «вертикальпе» те), çакăнта Раççейри регионсенче йĕркелекен чăваш наци культура пĕрлешĕвĕсене те кĕртмелле.**

Чăваш наци конгресĕн çак тарана çитсе те хăйĕн пичет органĕ çуккине туса çитермен ĕç тесе шутлатăп.

Чăваш наци конгресĕ районсемпе хуласенчи депутатсен пухăвĕсен, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн суйлавĕсене хутшăнманни – çитменлĕх кăна мар, стратегилле йăнăш. Конгресс, чăннипе, Чăваш Енре граждан обществине йĕркелемелли тĕп никĕссенчен пĕри пулса тăмалла.

Раççей Федерацийĕн регионĕсенчи чăваш наци культура пĕрлешĕвĕсем – хăватлă вăй. Вĕсем Чăваш Республикин Правительстви умĕнче тăракан çивĕч нумай ыйтăва татса пама пултараççĕ: бизнес-çыхăнусем йĕркелемешкĕн пулăшма, ĕçĕн чи явапллă вырăнĕсене ертсе пыма пултаракан квалификациллĕ специалистсем шыраса тупма (эпĕ яла квалификациллĕ кадрсем явăçтарас тĕлĕшпе йышăннă ятарлă указпа сире паллаштарма ыйтăттăм); ытти регионсенчи бизнесăн экономикăпа культура вăй-хăватне Чăваш Енĕн вăй-хăвачĕпе пĕрлештерме; малта пыракан опытпа паллаштарассине интенсивлăрах тума; Чăваш Ен интересĕсене ытти регионсенче тулли правапа пурнăçлама.

Манăн Чăваш наци конгресне ĕçченлĕхе ÿстерме, хăйĕн ĕç-хĕлĕнче çĕнĕ информаци технологийĕсемпе, интернет майĕсемпе активлăрах усă курма, пĕтĕм чăваш диаспорин ĕçне йĕркелессине лайăхлатма, тĕрлĕ ыйтăва татса панă чухне хăватлă пулăшуçă вырăнне пулма сĕнес килет.

Чăваш Ен ытти регионсемпе тĕнчере пурăнакан пирĕн ентешсемшĕн –историлле тăван çĕр-шыв.

Таçта аякра пĕчĕк çĕр-шыв пуррине туйса тăни çынсене психологи тата этеплĕх енчен пулăшса пырать. Çĕр-çĕр те пин-пин курăнман çыхăну урлă Чăваш çĕрĕ вĕсене тăван чĕлхен тата наци культурин сĕткенне парса тăрать.

Çавăн пекех эсир те, республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсем, пирĕншĕн – тăван çынсем, йăхташсем. Чăваш Енĕн утравĕсем ытти регионсенче тата тĕнчере пурри çинчен шутласа илсен пирĕн чунсенче те ăшăрах пулса каять.

**Хисеплĕ ентешĕмĕрсем! Чăваш наци конгресне йĕркелесе никĕслекен хăш-пĕр çынсем те паян Конгресăн малашлăхĕ пирки иккĕленсе калаçнине эпĕ пĕлетĕп. Кутăнлашса тата кÿренсе пурăнма, халăхшăн кам ытларах ĕçлени пирки тавлашма пăрахмалла. Чылай чухне наци интеллигенцийĕн активлă пайне кĕрекен çынсем пĕр чĕлхе тупайманнине пула нумай ыйтăва татса параймарăмăр. Мĕншĕн тесен вăй-хăвата ытларах уйрăм ушкăнсен тата уйрăм çынсен хушшинчи хутшăнусене татса пама сапалатпăр.**

Чăваш наци конгресĕ уйрăм çынна мар, пĕтĕм халăха кирлĕ. Паян ку чухнехи, чăн пурнăça тивĕçтерекен çĕнĕ платформа туса хатĕрлемелле. Çак ĕçе пурнăçлама Чăваш Енре Конгресăн пурте пур: политика, саккун, моральпе психологи условийĕсем, пухнă опыт (хушăран тумхахлă пулин те). Ăна ертсе пыракансем те йĕркелÿ тата халăхпа ĕçлес ыйтусене татса пама хăнăхса çитнĕ тата ăсталăх пухнă. Раççей регионĕсенче хастар ĕçлекен чăвашсем те, чăваш наци культура центрĕсем те сахал мар. Чăваш нацийĕшĕн тăвакан пархатарлă ĕçсене шута илсе Чăваш Ен тĕп хулинчи чи илемлĕ вырăнти истори палăкĕ шутланакан çурта Чăваш наци конгресне уйăрса патăмăр.

Ĕçлес тесе çунакансем тата çителĕклĕ вăй-хал пур. Апла пулсан пирĕн пурин те вăйсене пĕр çĕре пухса тата та тухăçлăрах ĕçлемелле.

Çапла пултăр!

*«Хыпар», 22.03.2005, 52–53№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН VI АСЛĂ ПУХĂВĔН ДЕЛЕГАЧĔСЕМ РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ПРЕЗИДЕНТНЕ В.В. ПУТИНА

### ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хисеплĕ Владимир Владимирович!

Эпир, Чăваш наци конгресĕн VI съездне Чăваш Республикинчен, çавăн пекех Тутарстанри, Пушкăртстанри, Мари Элри, Коми, Мускав, Ульяновск, Самар, Пенза, Саратов, Иркутск, Оренбург, Мурманск, Томск, Тюмень облаçĕсенчи, Красноярск крайĕнчи, Мускав, Санкт-Петербург, Камчаткăри Петропавловск хулисенчи, Казахстанри, Эстонири, Беларуçри, Украинăри чăваш диаспоринчен суйласа янă делегатсем, пĕрлехи йышăнупа Сирĕн пата çак ыйтупа тухатпăр.

Паян Чăваш Республикинче социаллă пурнăçпа экономикăри, обществăпа политикăри лару-тăру йĕркеллĕ. Чăваш Ен çирĕппĕн, пĕр тикĕс аталанса пырать, кунта сывлăх сыхлавĕнче, строительствăра, вĕрентÿ ĕçĕнче, культурăра, социаллă хÿтлĕх сферинче Раççейри тата Пĕтĕм тĕнчери инноваци проекчĕсем ăнăçлă пурнăçланса пыраççĕ. Ку чухнехи условисенче çакă пысăк пĕлтерĕшлĕ: нумай нациллĕ республика нацисен тата тĕрлĕ тĕне ĕненекенсен хушшинчи хутшăнусем енĕпе тĕслĕх пулса тăрать, çакна Эсир 2004 çулхи нарăс уйăхĕнче Чăваш Ене килсен хăвăр курса ĕнентĕр. Эпир иккĕленместпĕр: Чăваш Республикин çитĕнĕвĕсем ăна 12 çула яхăн Николай Васильевич Федоров ертсе пынипе те çыхăннă.

Эсир Раççей патшалăхне çирĕплетме, федераци патшалăхĕ йĕркелеме ăнтăлнине эпир туллин ырлатпăр.

Хисеплĕ Владимир Владимирович! Чăваш Ен Президенчĕн полномочийĕсене памашкăн сире Николай Васильевич Федоров кандидатурине Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнче пăхса тухма сĕнмешкĕн ыйтатпăр. Н.В. Федоровпа пĕрле эпир Чăваш Ене – Раççей Федерацийĕн пĕр пайне – малашне те пĕр тикĕс аталантармашкăн пĕтĕм вăя хума шантаратпăр.

Шупашкар, 2005 çулхи пуш уйăхĕн 19-мĕшĕ.
*«Хыпар», 23.03.2005, 54№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔ ТĔНЧЕРИ МĔН ПУР ЧĂВАШСЕНЕ, РАÇÇЕЙРИ, УНĂН РЕГИОНĔСЕНЧИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ САККУН ЙЫШĂНАКАН ОРГАНСЕМПЕ ВЛАÇĂН ЫТТИ ТЫТĂМĔСЕНЕ

### ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Этем прависен пĕтĕмĕшле Декларацийĕ, Граждансен тата политика прависен халăхсен хушшинчи килĕшĕвĕ тата Экономика, социаллă пурнăçпа культура прависен халăхсен хушшинчи Килĕшĕвĕ (пурĕ пĕрле этем прависен Пĕтĕм тĕнчери хартийĕ ятпа пĕрлешсе тăракансем) пур халăхшăн та, пур патшалăхшăн та пĕтĕмĕшлине тата вĕсене пур çĕрте те

хисеплемеллине, пурнăçламаллине шута илсен – чăваш халăхĕн хăйĕн шăпине никамран ыйтмасăрах хăйĕн татса пама тулли право пур, вăл хăйĕн политика тытăмне ирĕклĕн палăртма, экономикăпа социаллă пурнăç тата культура аталанăвне ирĕклĕн йĕркелесе пыма тивĕç.

Çакăн пирки Чăваш наци конгресĕ хăйĕн пĕрремĕш (йĕркеленӳ) Аслă пухăвĕнчех уçăмлăн та татăклăн пĕлтернĕччĕ. Чăваш халăхĕн чĕрĕлĕвне, аталанăвне, пĕрлешĕвне çĕнĕ вăй кĕртес тĕллевпе темиçе документ йышăннăччĕ. Вĕсем – «Чăваш халăхĕн наци чĕрĕлĕвĕ çинчен» деклараци, «Чăваш Республикин патшалăх суверенитечĕ çинчен» тата «Наци политики енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ çинчен» резолюцисем, çавăн пекех массăллă информаци хатĕрĕсем, чăваш наци кĕнекине кăларас ĕçе хӳтелесси, чăваш кино искусствине чĕртсе аталантарасси, пĕтĕм чăвашсен хаçатне – Чăваш наци конгресĕн органне – туса хурасси, чăваш шкулне аталантарасси тата наци кадрĕсем хатĕрлесси, чăваш предприниматель ĕçне аталантарасси çинчен йышăнусем.

Çак документсем чăваш наци ирĕклĕхĕн юхăмне, çĕр-шывăн, республикăн экономика тата социаллă пурнăçĕн аталанăвне ырă витĕм кӳмен мар. Çапах та чăваш халăхне чĕрĕлӳ çулĕпе кайма пулăшма пултаракан сĕнӳсемпе йышăнусенчен чылайăшĕ хут çинче çеç юлчĕç.

Çавăнпа та Чăваш наци конгресĕн VI Аслă пухăвĕ ЧНКн пĕрремĕш тата ун хыççăнхи Аслă пухăвĕсенче çĕкленĕ ыйтусене тишкерсе çапла чĕнсе калать:

– çĕр-шывра мĕн пур наци çыннисен прависене тата тĕп ирĕклĕхĕсене хисеплемелле;

– патшалăхăн çӳлти структурисенче наци республикисене кĕпĕрнесен йышне кĕртес шухăша тĕпрен пăрахăçламалла;

– хăйĕн пуçлăхĕсене халăх хăй суйлани – демократи принципĕн пысăк çитĕнĕвĕ. Ку вăл – халăха хăйсене хисеплени, хаклани, унăн шухăшне шута илни. Çавăнпа та чăвашсене республика ертӳçипе хăй тытăмлăх пуçлăхĕсене суйлама хăйсене ирĕк памалла;

– çĕр-шыв шайĕнче те, республика шайĕнче те наци политики енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ кирлĕ. Çакă паянхи чылай çивĕч ыйтăва татса пама, наци патшалăх тытăмне çĕнетсе лайăхлатма пулăшĕ.

Республикăра чăваш халăхĕ патшалăх йĕркелĕвĕн тытăмĕн никĕсĕ (государствообразующий народ). Çак пулăма республика ĕç-хĕлĕнче, пурнăçĕнче, тĕллевĕ-ăнтăлăвĕнче асра тытса тăмалла, наци кадрĕсем хатĕрлес, шкулсенче чăваш чĕлхине вĕрентес, халăх йăли-йĕркине сыхласа хăварас, массăллă информаци хатĕрĕсене ĕçлеме май туса парас, республика сăн-сăпатĕнче наци колоритне палăртас енĕпе уçăмлă утăмсем палăртмалла.

19.03.2005.

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН РЕЗОЛЮЦИЙĔСЕМ

**Наци аталанăвĕ е наци политики енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ çинчен**

Чăваш Республикин патшалăх управленийĕн тытăмĕсем урлă Чăваш Енри мĕн пур халăхăн экономика, культура, социаллă прависене пурнăça кĕртес тата чăваш халăхĕн наци культура интересĕсене хӳтĕлес тата тивĕçтерес тĕллевпе Чăваш наци конгресĕ çапла йышăнать:

Чăваш Республикин Президентĕнчен Чăваш Республикин правительство тытăмĕнче Наци аталанăвĕ е наци политики енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ е министерстви туса хума ыйтас.

Çак комитет (министерство) хăйĕн ĕçне çак тĕп çул-йĕрпе туса пыма тивĕçлĕ:

– республикăн наци патшалăх тытăмĕн ыйтăвĕсем тăрăх Чăваш Республикин патшалăх влаçĕпе управленийĕн мĕн пур шайри органĕсемпе килĕштерсе ĕçлет, наци патшалăх тытăмне çĕнетсе лайăхлатас тĕлĕшпе сĕнӳсем палăртса хатĕрлет;

– наци кадрĕсем вĕрентсе хатĕрлессине йĕркелет тата координацилесе тăрать;

– наци культурипе вĕренĕвне, наука ĕçне, йăлана кĕнĕ промысласене аталантармалли туртăмсене тишкерет, республика правительствине вĕсене аталантарас енĕпе сĕнӳсем хатĕрлесе тăратать тата аталану ĕçне пĕтĕмлетет;

– нацисен хушшинчи хутшăнусене йĕркелесе тăрать, вĕсене аталантарас енĕпе сĕнӳсем хатĕрлет тата саккунсем хатĕрленĕ чухне тивĕçлĕ сĕнӳсем тăратать;

– «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккуна пурнăçлас тĕлĕшпе учреждениссен, организацисен, вĕренӳ системин ĕçне йĕркелет тата координацилесе тăрать, методика пособийĕсем хатĕрлет, малта пыракан паха опыта анлă сарать;

– саккунпа килĕшӳллĕн халăх йышĕпе çыхăннă лару-тăрăва йĕркелесе тăрать;

– тĕрлĕ çивĕч ыйтусемпе общество шухăшне тишкерес ĕçе йĕркелет;

– чăваш массăллă информаци хатĕрĕсен ĕçне йĕркелеме хутшăнать, вĕсен ĕçне координацилет, пурлăхпа техника никĕсне вăйлатма пулăшать;

– çителĕклĕ информаци парса тăрас тата культура çыхăнăвĕсем йĕркелес тĕлĕшпе наци программисемпе халăхсен пĕрлехи программисене палăртса хатĕрлет, вĕсене пурнăçлас ĕçе йĕркелет;

– чăваш халăхĕн истори еткерне, йăла-йĕркипе паха опытне тишкерессине тата пĕтĕмлетессине йĕркелет, координацилет;

– этнос е нацисен ыйтăвĕсемпе, экологи, йăла, культура ыйтăвĕсемпе ĕçлекен общество юхăмĕсене, организацисене, обществăсене саккунпа килĕшӳллĕн пулăшса тăрать;

– Чăваш Республикин тулашĕнче пурăнакан чăвашсемпе вĕсен ушкăнĕсене туслă çыхăнусем йĕркелеме, культура ĕçне вăйлатма пулăшать, çакна вăл килĕшусем туса, наци культура автономийĕн механизмне ĕçе кĕртсе пурнăçласа пырать.

Наци аталанăвĕ е наци политики енĕпе ĕçлекен комитет (министерство) ЧНКпа тата обществăн ытти пĕрлешĕвĕпе, юхăмĕсемпе тачă килĕштерсе ĕçлеме тивĕçлĕ.

ЧНК Мăн Канашĕн членĕсем Патшалăх комитечĕн (министерствăн) коллегине кĕме пултараççĕ.

19.03.2005.

### Чăваш ялĕсене сыхласа хăварасси, унти пурнăça лайăхлатасси çинчен

Чăвашăн таса та илемлĕ чĕлхи, йăли-йĕрки, авалхи культура паллисем тата наци ытти атрибучĕсемпе колоритне палăртакан туртăмсемпе пулăмсем, тĕпрен илсен, ялсенче сыхланса юлнă. Ахальтен мар чăвашсем «Ял пĕтсен чăваш пĕтет» теççĕ.

Юлашки вăхăтра Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров тăрăшнипе, Раççейри ытти регионсемпе танлаштарсан, Чăваш Енре ялсене аталантарас енĕпе сахал мар ĕç тăваççĕ. Ку ялсене газификацилени, çемье врачĕн офисĕсем, тĕслĕх библиотекăсем уçни, шкулсене компьютерсемпе ытларах тивĕçтерни, паха шывпа тивĕçтерме палăртни тата ытти те. Республика бюджетне ял хуçалăхне аталантарма çултан-çул ытларах укçа хываççĕ. Çапах та чăваш ялĕ чăннипех те чĕрĕлсе-аталанса, вăй илсе пырать тесе калаймастпăр. Ялсенче халăх йышĕ чакать, шкулсем, культура çурчĕсем хупăнаççĕ. Пин-пин гектар çĕр сухаланмасăр выртать, темиçе çул каялла туса лартнă пысăк фермăсемпе цехсенче çил вылять, трактор паркĕсенче çĕмрĕк техника купаланса выртать.

Тăранса пурăнмалăх, çемьене тытса тăмалăх ĕç çукран ял çыннисем хуласене пурăнма куçаççĕ е аякка ĕçлеме туха-туха каяççĕ.

Чăваш ялĕсенчи паянхи лару-тăрăва лайăх еннелле улăштарас тесе Чăваш наци конгресĕ çакăн пек сĕнÿсем тăрататъ:

– 2006 çула республикăра Яла аталантармалли çулталăк тесе палăртса пĕтĕм вăя çак тĕллеве пурнăçлама ямалла;

– ял çыннисене ĕçпе тивĕçтерессi çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла. Çавна май ял хуçалăхĕн пур отраслне те аталантарас енĕпе майсем шырамалла, туса илекен продукцие вырăнтах тирпейлессине йĕркелемелле, ку енĕпе цехсем, заводсем лартас ыйту çине тимлĕрех пăхмалла;

– ялта пурăнакансен ĕçпе йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн çине тăрса ĕçлемелле, ытларах ача çуратнăшăн, хăйĕн пурнăç çулне ялпа çыхăнтарнăшăн хĕр-упраçпа яш-кĕрĕме хавхалантармалли майсем палăртмалла.

19.03.2005.

**Чăвашсен ырă йăли-йĕркине упраса хăварасси тата унпа кулленхи пурнăçра усă курасси çинчен**

Тĕнчери, Раççейри, республикăри паянхи лару-тăрăва – терроризм, киревсĕр ĕçсем тăвасси сарăлса пынине, çынсен тăнăç пурнăçĕ, канлĕхĕ пăсăлнине, çитĕнекен ăру тĕслĕх илмелли идеалсăр ÿснине – шута илсе Чăваш наци конгресĕ çапла йышăнать:

– чăвашсен мĕн ĕлĕкрен пынă ырă йăли-йĕркине – ĕçченлĕхе, сăпайлăха, килĕштерсе пурăнассине, ваттисене хисеплессине тата ытти паха енсене çĕнĕрен чĕртсе, пурнăçа кĕртсе чăваш халăхĕн, çавăн пекех вĕсемпе юнашар пурăнакан халăхсен пурнăçне лайăхлатас енĕпе татăклă утăмсем тумалла;

– çемьесенче, ача сачĕсенче, шкулсенче, ятарлă пĕлÿ паракан, аслă вĕренÿ заведенийĕсенче чăвашсен мĕн авалхи ырă йăли-йĕркине вĕрентес, хăнăхтарас енĕпе калаçусем, вĕрентÿ урокĕсем, семинарсем тата ытти занятисем йĕркелесе ямалла, вĕсене куллен кун ирттерсе пымалла.

– Шупашкарта этнопарк тăвассине татса памалла;

– кашни ялтах ваттисен хуралне, ял старостине суйлассине йĕркене кĕртмелле;

– чăвашсен мĕн ĕлĕкрен ирттернĕ уявĕсемпе йăли-йĕркине çĕнĕрен чĕртсе йышпа паллă тăвассине йĕркелемелле;

– чăваш халăхĕн ырă йăли-йĕрки пирки хаçат-журналта тĕплĕн çырса кăтартмалла, радио- тата телепередачăсем йĕркелемелле, уйрăм кĕнекесем пичетлемелле;

– чăвашсен авалхи пурнăçне сăнлакан вырăнсемпе хулашсене çитсе курмалли экскурси маршручĕсем уçмалла;

– чăваш уявĕсемпе йăли-йĕркин календарьне кашни çул пичетлесе кăлармалла.

19.03.2005.

**Массăллă информаци хатĕрĕсем çинчен**

Юлашки вăхăтра МИХсен шăпи пирки калаçни, шухăшлани анлă сарăлчĕ. ЧНК та çак процесран пăрăнасшăн мар. Рынок – хĕрхенÿсĕр, шеллеме пĕлмен пулăм. Кунашкал вăхăтра уйрăмах наци МИХĕсене тата титул наци чĕлхипе йĕркеленĕ кăларăмсемпе передачăсене (радиопа телевиденире, тен, Интернетри страницăсенче те) çав тери йывăр лекет. Тăваттăмĕш влаçăн вăйне пĕтерсессĕн уйрăм наци республикисен пуласлăхĕ те иккĕленÿллĕ.

ЧНК çапла йышăнать:

– наци кăларăмĕсене патшалăх шайĕпе финанс тĕлĕшĕнчен тытса тăрассине сыхласа хăвармалла, вĕсем ытти кăларăмсенчен приоритетлăрах пулмалла, вĕсен шайне те ÿстерсех пымалла;

– журналистикăн наци компонентне вăйлатма кадрсем хатĕрлес ĕçре улшăнусем тумалла (вĕренÿ планĕсенчи наци-регион компонентне вăйлатса, чăваш журналистикин, литературин, культурин паллă ĕçченĕсене вĕрентме хутшăнтарса);

– «Хыпар» хаçат тытса пыракан политикăна ырламалла, вăл хăй çумĕнче ытти кăларăмсене йĕркелессине пур енчен те пулăшмалла;

– ЧНК радиопа телевиденире пулса иртекен ырă мар улшăнусене татăклăн сивлет. Нацисене информаци тĕлĕшĕнчен хĕсни – ăнланмалла мар политика. Ку федераци политики мар, ăна хирĕçле пулăм. Чĕлхесем çинчен калакан саккун кăна мар, цивилизацин пĕтĕм тĕнче йышăннă йĕркисене пăсни те. Хамăр Европа пĕрлĕхне кĕрес тетпĕр, титул нацие вара хальхи саманара анлă сарăлнă радиопа телевидени витĕмĕнчен пăрса вăтам ĕмĕрсенчи инквизици тапхăрне ăсататпăр. Чăваш халăхне информаци вакуумне кĕрсе ÿкме памалла мар;

– республикăри влаçăн тĕрлĕ шайри тытăмĕсен, общество организацийĕсен çак процеса май килнĕ таран чарса лартма е улăштарма тăрăшмалла. Наци кăларăмĕсемпе передачисен йышне ÿстермелле, талантлă чăваш журналисчĕсене ĕçрен кăларса яма памалла мар;

– республика бюджетĕнче Чăваш телевиденийĕпе радио ĕçне вăйлатма, вĕсен автономине ÿстерме укçа уйăрмалла;

– эфира пралуксăр тухакан радио ĕçне вăйлатмалла, унăн пурлăх базине çирĕплетмелле, УКВ хумĕпе талăкĕпех ĕçлекен чăвашла радиостанци хута ямалла.

19.03.2005.

**Суйлавсем çинчен**

ЧНК хальхи Раççейре пулса иртекен политика реформисем пирки хăй сăмахне каланăччĕ ĕнтĕ: федераци субъекчĕсен ертÿçисене (уйрăмах наци республикисенче) халăх сасăласа суйлас пирки, «суверенитет» ăнлавпа çыхăннă пĕлтерĕшлĕ тата принциплă положенисене наци субъекчĕсен конституцийĕсенче сыхласа хăварасси пирки... ЧНК çĕршыври хальхи вăхăтри лару-тăру сăн-сăпатне хăй енчен сăлтавласа йышăнать, политика партийĕ мар пулин те политика пурнăçĕнчен айккинче юлмассине пĕлтерет. ЧНК çапла шутлать:

– Чăваш Республикин Президентне Раççей Президенчĕ сĕннипе суйлас процеса Патшалăх Канашĕн çеç мар, общество организацийĕсен те хутшăнма право пулмалла, çав шутра – ЧНКн та; Патшалăх Канашĕн республика интересĕсене тĕпе хуракан, хÿтĕлекен общество организацийĕсен шухăшĕсене те шута илмелле;

– юлашки вăхăтра республикăра Общество палати йĕркелес ыйту пирки калаççĕ. Енчен те çак шухăш пурнăçа кĕрет пулсан, унта республикăра пурăнакан çынсен интересĕсене хÿтĕлекенсене кĕртмелле, халăхсен шучĕн пропорцине шута илмелле (чăвашсем – 70 процента яхăн);

– ЧНКн суйлавсен процесне хĕрÿ хутшăнмалла (Патшалăх Канашĕнне те, вырăнти хăй тытăмлăхсенне те). ЧНКра тĕрлĕ партисен шухăшĕсене ырлакан çынсем тăраççĕ. Вĕсене пĕрлештерекенĕ – чăвашлăх туйăмĕ. Республика Патшалăх Канашĕн суйлавĕнче хăш парти чăваш халăхĕн интересĕсене шута илĕ, ЧНК çав партишĕн çине тăрса ĕçлĕ;

– ЧНК политикăпа администраци реформисен Мускав шайĕнчи лару-тăрăвĕ пирки те хăйĕн сăмахне калать: Регион ĕçĕсен министерствине ЖКХ ыйтăвĕсемпе çеç ĕçлеттерни çителĕксĕр. Унччен депутатсен Национальноçсен палати пурччĕ. Кашни халăх унта хăйĕн представителĕсене суйласа яратчĕ. Нацисем малашне те хăйсен интересĕсене хÿтĕлейччĕр тесен çав палатăна çĕнĕрен йĕркелемелле. Ку шăпах Раççейĕн федерации принципĕсене хÿтĕлени пулĕ.

19.03.2005.

**Тăван хуламăр Шупашкар пирки**

Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн чылай ларăвĕнче Шупашкар шăпи, пуласлăхĕ, сăн-сăпачĕ, чăвашлăхĕ пирки чылай калаçнă, сĕнÿсем тăратнă. Чылай сĕнĕве хула администрацийĕ шута илме тăрăшать, анчах ĕçлемелли тата та нумай-ха. 2005 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 15-мĕшĕсенче ЧНК делегацийĕ хула мэрĕ Н.И. Емелья-

нов патӗнче пулчӗ, усăллă, конструктивлă калаçу иртрӗ. Шупашкар администрацийӗ ЧНКн нумай сӗнӗвне ырларӗ.

ЧНК çапла шутлать:

– Шупашкар хулине 1255 çулта никӗслени çинчен тӗпчевçӗсем ӗнентернине ырлас, хулан 750 çулхи уявне 2005 çулхи «Хула кунӗнче» палăртма чӗнсе калас;

– çак датăна халалласа хула шкулӗсенче «Тӗп хуламăр, эсӗ ватă та, çамрăк та» (Моя столица, ты и старинная, ты и молодая) (яваплисем – ЧНК, хула администрацийӗ) конкурс ирттерес;

– хулан архитектура сăн-сăпатне чăвашлатас тӗлӗшпе хулан строительство канашне ЧНК представительне кӗртме сӗнес, специалистсен ятарлă семинарне йӗркелес;

– Шупашкар чăваш хули пулнине шута илсе тата пӗтӗм тӗнчере хула ячӗсем пӗр вариантлă пулнине ас туса, ЧНК пӗр ят хăварма сӗнет: «Шупашкар». Транскрипци тӗлӗшӗнчен те йывăрлăх çук, ытти халăх çыннисем те ку ята хăнăхнă;

– хулана пырса кӗрекен аслă çулсен хӗррине «Шупашкар» тесе çырнă монументсем лартма сӗнес;

– хула администрацийӗ çумӗнче вырăсларан чăвашла, чăвашларан вырăсла куçарма пулăшакан чӗлхе-куçару комиссийӗ йӗркелес, унта Чăваш Республикин паллă чăваш филологӗсене кӗртес;

– хулари предприятисемпе организацисен ячӗсемпе вывескисенче, вӗсенчи кабинетсенчи табличкăсенче нумай йăнăш-çитменлӗх. ЧНК вӗсене йӗркене кӗртме чӗнсе калать, унăн хастарӗсем ку ӗçрен аякра тăмӗç;

– магазинсемпе тӗрлӗ организаци ячӗсене те чăвашла ят пама сӗнес. Калăпăр, «Çăл куç», «Хăнара», «Шупашкар» вывескăсене пур çын та пӗлет;

– «Шупашкар: 500 çул» паркра чăвашсен аваллăхне кăтартакан этнографи паркне (этнопарк) уçассине ытла та вăраха тăсса янине палăртас;

– хулара Н.В. Никольский ячӗллӗ сквер йӗркелес.

19.03.2005.

**Чăваш çамрăкӗсен шăпи пирки**

Эпир, ЧНКн çамрăк хастарӗсем, чăваш халăхӗн пуласлăхӗ, унăн шăпи чăваш яш-кӗрӗмӗпе хӗр-упраçӗнчен килет тесе шутлатпăр. Республикăмăр аталанăвӗ те çамрăксен аллинче теме пулать, ун валли кадрсем хатӗрлес ыйту та кайра тăраканни мар. Тăван çӗр-шыва хӳтӗлес ӗç те чăваш яшӗсене яваплă тăвать. Вӗсен сывлăхӗ, кăмăл-сипетлӗх шайӗ, тӗнче курăмӗ, наци ăнланăвӗ, сумпа пурлăхлăх шайӗ, ӗçсӗрлӗх ыйтăвӗ пурне те шухăшлаттармалла, пăшăрхантармалла, çав шутра – Чăваш правительствине те.

Чăваш наци конгресӗ чăваш çамрăкӗсен ыйтăвӗ çивӗчленнине палăртать, паянах чан çапса çак ыйтăва халăх çине, патшалăх тытăмӗн ӗç тата саккун органӗсене çитермеллине пӗлтерет:

– чăваш яш-хӗрӗ ӗçсӗр касăлать, аякри вырăнсене кайса укçа тăвать, нумай чухне ултав серепине лекет, кăмăл-сипет енчен пăсăлса таврăнать;

– ӗçсӗрлӗх ыйтăвӗ уйрăмах чăваш ялӗсене пырса тивет, çавăнпах ялсем пӗтсе пыраççӗ, унти демографи ыйтăвӗ çивӗчленет;

– аслă шкул, техникум пӗтернӗ çамрăксене ӗçпе тивӗçтерес ыйту çивӗчленчӗ. Вӗсене патшалăх ӗç тупас енӗпе пулăшаймасть: хăйсен чупса çӳреме тивет. Уйрăмах тӗрлӗ аслă шкул филиалӗсем нумайланса конкуренцие пысăклатаççӗ. Апла пулсан халăх хуçалăхне кирлӗ кадрсен шутне пăхса тухмалли программа кирлӗ;

– аслă пӗлӳ илесси ял ачисемшӗн йывăрлансах пырать. Коммерци çулӗ çине тăрса аслă шкулсем халăхăн пур-çук укçине шăйăраççӗ, Конституци вӗренме ирӗк панине пăсаççӗ, уйрăмах – Мускаври тата ытти хуласенчи вузсен филиалӗсем;

– çамрăк çынсен хваттерлӗ пулас ыйтăвӗ те, тӗрлӗ программăсем пур пулин те, йывăррăн татăлать, апла наци генофончӗ çӗнелсе пырасси те иккӗленӳллӗ;

– ӗçкӗ-çикӗ, наркомани, преступлени тăвасси шăпах чăваш çамрăкӗ шанăçа сухатнинчен амаланать;

– сăра «культурин» кульчӗ, каçхи барсем, пăнтăх идейăллă кӗнекесемпе фильмсем, ирӗклӗ юрату пропаганди, çăмăл укçа тума чӗнекен çамрăк çын кульчӗ çамрăксен тыткаларăшне асар-писерлетет, ваттисене хисеплесси чакать, наци ăнлавӗ вӗсен пачах çухалать;

– уйрăмах суицид (хăй çине алă хурасси) амаланать, çамрăксене вилӗм çави ним вăрçăсăрах (Чечня вăрçи пирки каламасăрах паллă) çулать; ӗçсӗрлӗх, укçасăрлăх вӗсене çапла тума хистет;

– çамрăксен сывлăхӗ те хавшанă: сывă апат çиейменрен, экологи витӗмӗпе, эмелсем хаклă пулнăран, чунра психологи тăнăçлăхӗ çукран.

ЧНК чăваш çамрăкӗсене çăлас, вӗсене шанăç кӳрес ыйтăва татса пама хӗрӳ хутшăнасси пирки пӗлтерет, ку ӗçе Чăваш Ен Правительствипе пӗрле тума хатӗрри çинчен калать. Ку енӗпе Чăваш Республикинче ятарлă программа е саккун йышăнмалла, вăл Правительствăн, патшалăхăн ытти органӗсен, общество организацийӗсен, çав шутра ЧНКн тӗп тӗллевӗсенчен пӗри пулмалла. «Чăваш ачи, сассуна пар!» – тенӗ пирӗн çулăмлă поэтăмăр Çеçпӗл Мишши хăй вăхăтӗнче. Çеçпӗл вăхăчӗ тепӗр хут таврăнчӗ: вăл чӗнни паян та çав тери çивӗч. Çамрăксен сасси паян тата ыран çирӗп, янравлă пултăр тесен вӗсен шăпи пирки пӗтӗм халăхăн влаçпа пӗр пулса шухăшламалла. Атьăр пархатарлă çак ӗçе кӳлӗнер!

19.03.2005.

**Чăваш чӗлхипе литературине хула шкулӗсенче вӗрентесси çинчен**

Ку чухнехи хула шкулӗсенче чăваш чӗлхипе литературине, культурине вӗрентессин хальхи шайӗ-тăрăмӗ Чăваш Республикин халăхсен ыйтăвӗсене тивӗçтереймест. Шкул ачисем вăтам шкул пӗтернӗ тӗле чăваш чӗлхипе ирӗклӗ калаçма вӗренеймеççӗ, вӗрентӳ методики тухăçлă мар, чăваш чӗлхипе культурине вӗрентмелли меслет кӗнекисем çукпа пӗрех, вӗрентӳ кӗнекисен шайӗ паянхи наукăпа методика ыйтнине тивӗçтереймест, вӗсен пахалăхӗ кирлӗ шайра мар. Хула шкулӗсенче чăваш чӗлхипе литературине тата республикăра тăван ен культурине предмет шучӗпе вӗрентес сехетсен шучӗ чакса пырать.

ЧНК хулари шкулсенче чăваш чӗлхипе литературине, культурине вӗрентессин тухăçлăхне ӳстересси, тăван ен культурине вӗрентессине вăйлатасси, наукăпа методика тӗлӗшӗнчен çӗнӗ кӗнекесем кăларасси хальхи саманара чи кирлӗ ӗç тесе шутлать тата çапла йышăнать:

– çитес вăхăтрах чăваш чӗлхи учебникӗсене, методика кăтартăвӗсене хатӗрлесе кăларас тӗлӗшпе программа йӗркелемелле, аслă шкулсемпе тата методика учрежденийӗсемпе çыхăнса чăваш чӗлхине тухăçлă вӗрентмелли методика хатӗрӗсене янтăламалла, чăваш чӗлхине вӗрентекенсен ăсталăхне ӳстерес ӗçе тӗпрен çӗнетсе вăйлатмалла, тăтăшах курссем, семинарсем, конференцисем, конкурссем ирттермелле. Ӗçри паха опыт адресӗсене тупса палăртмалла, учительсен хушшинче сармалла;

– чăваш халăхӗн пархатарлă историйӗпе хăйсене евӗр культурине упраса хăварас тӗлӗшпе тăван ен вӗренӳ кӗнекисене инвентаризацилемелле, экспертиза тумалла тата лару-тăрăва лайăхлатас енӗпе конкретлă план сӗнмелле. Тăван ен вӗренӳ кӗнекисем, методика пособийӗсем хатӗрлесе палăрнă вӗрентӳ ӗçченӗсене мораль тата пурлăх тӗлӗшӗнчен хавхалантармалла, ку ӗçе малашне аталантарма вăхăтлăх наука тӗпчев ушкăнӗсем йӗркелемелле, çӗнӗ кӗнекесем янтăлас ӗçе вăйлатмалла.

– тăван чӗлхепе культурăн вӗрентӳ-методика кӗнекисен (çыракансен хушшинче) конкурсне йӗркелемелле, конкурса хутшăнакансене пурлăх тӗлӗшӗнчен хавхалантарма укçа-тенкӗ уйăрмалла.

– хулари шкулсенче халӗ чăваш чӗлхи урокӗсем эрнере виçӗ сехет (тутар хулисенче ачасем тутарла эрнере 5 сехет вӗренеççӗ). Вӗсен

шутне чакарма памалла мар. Ют чĕлхесене классене пайласа вĕрентеççĕ, чăваш чĕлхи урокĕсенче те çапла тумалла;

– вĕрентĕвĕн федераци çĕнĕ стандарчĕн проектĕнче регион предмечĕсен шутне 5 сехет çеç хăварасшăн. ЧНК ку пулăма тĕпрен хирĕç. Европа конвенцийĕнче титул наци чĕлхине вĕрентмелли предметсен сехет калăпăшĕ 40–60 процент тарăн пулмалла тенĕ;

– республика тулашĕнче чăвашла вĕрентес ĕç те йывăррăн пырать (учебниксем çитменни, сехетсем чакни...). Самар облаçĕнче чăваш чĕлхи урокĕсене е 1 сехет çеç хăвараççĕ, е пачах пĕтереççĕ. Аякри чăвашсене пулăшмаллах;

– темиçе çул каялла хулари шкулта чăваш чĕлхи вĕрентекен учительсене шалу çумне 15 процент хушса тӳлетчĕç. Çак ырă йĕркене çĕнĕрен чĕртмелле, мĕншĕн тесен чĕлхе вĕрентекенĕсен ĕçĕ калама çук йывăр, пархатарлă. Молдавире молдаван чĕлхин статусне ӳстерес тĕллевпе çак чĕлхене вĕрентекенсен шалăвне 3–4 хут ӳстернĕ.

– хула шкулĕсенчен вĕренсе тухакансене пĕтĕмлетӳллĕ, ятарлă экзамен е аттестаци витĕр кăлармалла. Унта вĕсем чăваш чĕлхине вĕреннине пĕтĕмлетчĕр, халăх культурин уйрăмлăхĕсем çинчен пĕлччĕр. Вара çак предметсен пĕлтерĕшĕ те ӳсет.

– чăваш шкулĕсенчен вĕренсе тухакансене ятарлă экзамен тыттарассине – чăваш чĕлхипе тата литературипе сочинени çырассине – çĕнĕрен йĕркелемелле.

19.03.2005.

### Чăвашсен сывă пурнăç йĕрки çинчен

Чăвашсем мĕн ĕмĕртенех сывă пурнăç йĕркине пăхăнса пурăннă. Çакă вĕсене харсăр кăмăллă, çирĕп ут-пӳллĕ пулса кирек мĕнле ĕçе те пăрăнмасăр тытса тума, хăйсен йышне ăруран ăрăва сыхласа хăварса, ӳстернĕçем ӳстерсе пыма май панă. Шел те, юлашки вăхăтра чăвашсен çак ырă та пурте пăхăнса пурăннă йăла-йĕрки çухалма пуçларĕ. Чăвашсен хушшинче нихçан пулман чирсем, чăвашсем ĕмĕрех сивленĕ сиенлĕ йăласем – венери чирĕ, наркомани, хырăм пăрахни, ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхни тата ытти те пурнăç йĕркине кĕме пуçларĕç, анлăн сарăлма тытăнчĕç.

Çаксене тĕпе хурса ЧНК Аслă пухăвĕ çапла йышăнать:

– Чăваш Республикинче, чăвашсем йышлăн пурăнакан регионсенче ĕçлекен коллективсенче, ушкăнсенче ĕçке-çике, ерех ĕçнине хирĕç çине тăрса кĕрешмелле, ку енĕпе ятарлă акцисем ирттермелле, ăнлантару ĕçне вăйлатмалла, специалистсемпе, медиксемпе, психологсемпе пĕрле тĕл пулусем тата ытти мероприятисем йĕркелемелле;

– чăваш çамрăкĕсен хушшинче наркоманипе токсикомани сиенлĕхне хирĕç уçăмлă та татăклă кĕрешӳ пуçарса ямалла. Ку енĕпе ятарлă ĕçсен планне туса хатĕрлемелле, акцисем, тĕрлĕ ытти мероприяти ирттермелле;

– чăваш ятне, унăн ырă йăли-йĕркине варалакан сиенлĕ пулăмсене тĕп тăвас тĕллевпе Чăваш Республикинче уçнă этнопедагогикăн наука тĕпчев институчĕн майĕсемпе туллин усă курмалла;

– сывă пурнăç йĕркине çирĕплетессинче физкультурăпа спорт пысăк вырăн йышăннине шута илсе кашни çулах регионсенчи чăваш ачисене Чăваш Республикинче пухса вĕсен çуллахи канăвне ятарлă лагерьте йĕркелесе ямалла.

– кашни çулах Республика кунĕ умĕн Кӳкеçре (Шупашкар районĕ) Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен Акатуйне ирттермелле, ун валли тăкаксене республика бюджетĕнчен саплаштармалла;

– кашни çулах, Космонавтика кунĕ умĕн, А.Г. Николаев ячĕллĕ парнене çĕнсе илес енĕпе Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен хушшинче Чăваш кĕрешĕвĕн ăмăртăвне ирттермелле, кашни 5 çулта А.Г. Николаев космонавт летчика асăнса спорт чупăвĕ йĕркелемелле.

19.03.2005.

## УСТАВ МЕЖРЕГИОНАЛЬНОЙ ОБЩЕСТВЕННОЙ ОРГАНИЗАЦИИ «ЧУВАШСКИЙ НАЦИОНАЛЬНЫЙ КОНГРЕСС»

### 1. Общие положения

1.1. Межрегиональная общественная организация «Чувашский национальный Конгресс», именуемая в дальнейшем «Организация», создается в соответствии с действующим законодательством Российской Федерации в форме общественной организации.

1.2. Организация считается созданной как юридическое лицо с момента её государственной регистрации: имеет в собственности обособленное имущество и отвечает по своим обязательствам этим имуществом, может от своего имени приобретать и осуществлять имущественные и личные неимущественные права, нести обязанности, быть истцом и ответчиком в суде.

1.3. В случае государственной регистрации Президиум Организации, являющийся её постоянно действующим руководящим органом, осуществляет права юридического лица от имени Организации и исполняет её обязанности в соответствии с настоящим Уставом.

1.4. Организация имеет самостоятельный баланс, открывает соответствующие счета в любых банках как в рублях, так и в иностранной валюте.

1.5. Члены Организации не имеют права собственности на долю имущества Организации и не отвечают по её обязательствам, а Организация не отвечает по обязательствам своих членов.

1.6. Организация имеет круглую печать со своим наименованием, штампы, фирменные бланки, фирменный знак и иные атрибуты юридического лица.

1.7. Место нахождения руководящих органов Организации: г. Чебоксары.

1.8. Организация осуществляет свою деятельность на территории менее половины субъектов Российской Федерации посредством создания своих структурных подразделений.

1.9. Полное наименование Организации – Межрегиональная общественная организация «Чувашский национальный Конгресс». Краткое наименование – МОО «ЧНК».

### 2. Цели организации

2.1. Основными целями Организации являются:

– сохранение этнической самобытности, языка, письменности, национальной культуры и традиций чувашского народа;

– содействие развитию политической и духовной культуры чувашского народа, его консолидации, укреплению дружбы между народами и многонационального единства российского общества;

– забота о развитии системы национального образования, здравоохранения, социальной защиты, среды проживания чувашского народа;

– установление и развитие межрегионального сотрудничества с общественными объединениями чувашей субъектов Российской Федерации и зарубежья.

2.2. Для достижения своих целей Организация:

– участвует в изучении и пропаганде истории чувашского народа, сохранении духовной и материальной культуры, формировании любви к отечеству;

– осуществляет мероприятия по пропаганде и популяризации достижений чувашской национальной культуры в республике и за её пределами;

– взаимодействует с национально-культурными объединениями чувашей и представителями чувашской диаспоры субъектов Российской Федерации и зарубежья;

– свободно распространяет информацию о своей деятельности;

– проводит собрания, митинги, демонстрации, шествия и пикетирования;

– учреждает средства массовой информации и осуществляет издательскую деятельность;

– выступает с инициативами по различным вопросам общественной жизни, вносит предложения в органы государственной власти;

– участие в выработке решений органов государственной власти и органов местного самоуправления в порядке и объеме, предусмотренном действующим законодательством, по вопросам развития языка и культуры чувашского народа, национальной литературы и средств массовой информации, экологии, сохранения духовных и материальных ценностей;

– представляет в органах государственной власти, органах местного само-

управления и общественных объединениях интересы Организации и её членов, осуществляя защиту их прав и интересов;

– участвует в выборах и референдумах в порядке, установленном законодательством Российской Федерации.

**3. Члены организации**

3.1. Членами Организации могут быть граждане, достигшие 18 лет, и юридические лица – общественные объединения, признающие настоящий Устав, выполняющие решения органов управления Организации и уплачивающие вступительные и членские взносы.

3.2. Члены Организации – граждане и юридические лица – общественные объединения – имеют равные права и несут равные обязанности.

3.3. Прием в члены Организации осуществляется на основе письменного заявления, которое должно быть рассмотрено Президиумом Организации в течение месяца со дня подачи. Решение о приеме или отказ оформляются в письменной форме и подписываются Президентом Организации.

Учредители Организации автоматически становятся её членами при создании Организации, приобретая соответствующие права и обязанности.

3.4. При отказе в приеме кандидат в члены Организации вправе обратиться в Большой Совет и Съезд Организации.

3.5. После принятия решения о приеме член Организации обязан в течение месяца внести в кассу или на расчетный счет Организации вступительный взнос.

3.6. Выход из Организации осуществляется на основе письменного заявления, порядок и сроки выхода аналогичны п.3.3. настоящего Устава.

3.7. Член Организации может быть исключен из Организации решением Большого Совета Организации при систематическом невыполнении им обязанностей члена Организации.

3.8. При выходе или исключении вступительный и членские взносы члену Организации не возвращаются.

3.9. Для учета количества членов Организации Президиум разрабатывает и утверждает журнал учета членов Организации, который ведется под руководством Президента Организации.

3.10. Члены Организации имеют право:

– принимать участие во всех мероприятиях, проводимых Организацией;

– избирать и быть избранными в руководящие и контрольные органы Организации;

– получать от руководящих и контрольных органов Организации информацию о её деятельности;

– выносить на рассмотрение руководящих и контрольных органов Организации вопросы, связанные с её деятельностью;

– свободно выходить из Организации в установленном порядке;

– носить атрибутику Организации (знак, эмблема, удостоверение);

3.11. Члены Организации обязаны:

– платить вступительные и членские взносы;

– исполнять принятые на себя обязательства по отношению к Организации;

– соблюдать положения настоящего устава;

– выполнять решения руководящих и контрольных органов Организации.

**4. Органы управления и контроля организации**

4.1. Высшим руководящим органом Организации является Съезд Организации.

4.2. В период между съездами постоянно действующим руководящим органом Организации является Президиум Организации, а также формируется Большой Совет Организации, являющийся координирующим органом Организации.

4.3. Для контроля за финансово-хозяйственной деятельностью Президента и Президиума Организации Съезд выбирает Ревизионную комиссию.

4.4. Съезд созывается Большим Советом Организации по мере необходимости, но не реже одного раза в четыре года.

Для решения вопросов, не терпящих отлагательства (изменение устава Организации, реорганизация и ликвидация Организации и т.п.), могут созываться внеочередные съезды.

Они созываются по решению Большого Совета, Президиума, по требованию Ревизионной комиссии или по требованию не менее одной трети членов Организации.

Съезд правомочен в случае присутствия большинства из числа избранных делегатов. Председателем Президиума Съезда является Президент Организации, а в его отсутствие – один из вице-президентов.

4.4.1. Вопросы, связанные с созывом Съезда Организации: место, время проведения, повестка дня и другие решаются Президиумом, который рассылает извещения делегатам не позднее 20 дней до открытия Съезда.

4.4.2. Съезд правомочен принимать решения по любым вопросам деятельности Организации. К компетенции Съезда относятся:

– определение основных направлений, приоритетов и форм практической деятельности Организации по реализации её уставных целей и задач, принципов формирования и использования имущества;

– рассмотрение докладов о деятельности Большого Совета Организации, Президиума, отчетов Ревизионной комиссии и принятие по ним решений;

– избрание Большого Совета, Президента и Ревизионной комиссии Организации, досрочное прекращение их полномочий;

– утверждение, изменение и дополнение устава Организации;

– решения о реорганизации или ликвидации Организации, утверждение ликвидационного баланса.

4.4.3. Вопросы на Съезде решаются открытым голосованием.

По вопросам исключительной компетенции Съезд принимает решения квалифицированным большинством в две трети присутствующих на Съезде делегатов, по остальным вопросам – простым большинством голосов присутствующих делегатов.

При голосовании каждый делегат имеет один голос.

4.4.4. Все решения Съезда оформляются протоколами, которые подписываются Председателем и Секретарем Съезда.

4.5. В период между съездами координирующим органом является Большой Совет, формируемый на Съезде из числа представителей структурных подразделений (региональных отделений) и членов Президиума Организации. Председателем Большого Совета является Президент Организации.

4.5.1 В компетенцию Большого Совета входит:

– созыв Съезда, определение нормы представительства на Съезд;

– координация деятельности региональных отделений и других структур Организации;

– рассмотрение отчетов о деятельности Президента, Президиума;

– избрание Президиума Организации и вице-президентов;

– избрание в особых случаях (отставка, недееспособность в результате болезни, несчастных случаев Президента и т.п.) Президента Организации;

– внесение предложений Съезду по реализации уставных целей и задач, определению приоритетных направлений деятельности Организации;

– утверждение состава Совета старейшин.

4.5.2. Заседание Большого Совета проводится не реже одного раза в год и считается правомочным при участии в его работе большинства членов Большого Совета. Решения Большого Совета принимаются большинством голосов из числа присутствующих членов.

4.6. Руководство деятельностью Организации в период между съездами осуществляет Президиум Организации.

4.6.1. Президиум Организации избирается Большим Советом сроком на один год. Количество членов Президиума Организации предлагается Президентом и утверждается Большим Советом.

4.6.2. Президиум Организации правомочен принимать решения по любым вопросам деятельности Организации, за исключением вопросов, отнесенных к исключительной компетенции Съезда и Большого Совета.

4.6.3. Президиум Организации:

– обеспечивает выполнение решений Съезда и Большого Совета;

– созывает внеочередные съезды для решения вопросов, не терпящих отлагательства;

– определяет размеры вступительного и членского взносов и порядок их уплаты;

– утверждает план работы на год и смету расходов Организации;

– утверждает годовые отчеты и бухгалтерские балансы Организации;

– решает вопросы деятельности Организации, вносимые на рассмотрение Президентом, Ревизионной комиссией и членами Организации;

– готовит проекты документов, решений, принимаемых Съездом и Большим Советом Организации;

– образует по основным направлениям деятельности Организации комитеты;

– принимает решения о создании, ликвидации и (или) реорганизации коммерческих организаций, создаваемых Организацией;

– утверждает главного редактора газеты Организации.

4.6.4. Заседания Президиума проводятся по мере необходимости, но не реже одного раза в месяц.

4.6.5. Заседания Президиума Организации созываются Президентом Организации или большинством членов Президиума.

Внеочередные заседания Президиума Организации могут быть также созваны по требованию Ревизионной комиссии или не менее одной трети членов Организации.

4.6.7. Члены Президиума Организации принимают решения и организуют работу по своему усмотрению. Кворумом является присутствие большинства членов Президиума Организации. Решения Президиума принимаются простым большинством голосов присутствующих на заседании членов Президиума.

4.7. Президент Организации является председателем Президиума.

4.7.1. Президент организует работу Организации, самостоятельно решает все вопросы деятельности Организации, за исключением вопросов, отнесенных к компетенции Съезда, Большого Совета и Президиума Организации.

4.7.2. Президент Организации:

– обеспечивает выполнение решений Съезда, Большого Совета и Президиума Организации;

– формирует исполнительный аппарат Организации, принимает на работу и увольняет с работы его персонал, утверждает его структуру, штатное расписание и фонд заработной платы, решает вопросы стимулирования труда;

– осуществляет непосредственное руководство повседневной работой Президиума и исполнительного аппарата Организации;

– действует от имени Организации без доверенности, представляет её во всех учреждениях и организациях как в Чувашской Республике, Российской Федерации, так и за границей;

– выступает без доверенности от имени Организации в суде, арбитражном или третейском суде;

– обеспечивает ведение журнала учета членов Организации;

– открывает счета в банках, совершает сделки, заключает договоры и обеспечивает их выполнение;

– в пределах компетенции издает приказы и распоряжения.

4.7.3. В случае отсутствия Президента его замещает один из вице-президентов на основе приказа Президента.

4.7.4. Вице-президенты (не более 3 человек, один из них – первый вице-президент) по предложению Президента утверждаются Большим Советом, которые курируют комитеты по основным направлениям деятельности Организации и одновременно являются членами Президиума.

4.8. Ревизионная комиссия Организации избирается Съездом сроком на четыре года. Количество членов Ревизионной комиссии и регламент её работы определяются Съездом.

4.8.1. Члены Большого Совета, Президиума и работники Организации не могут избираться в состав Ревизионной комиссии.

4.8.2. Ревизионная комиссия проводит проверки финансово-хозяйственной деятельности Президиума Организации, Президента и исполнительного аппарата Организации, составляет заключения об их деятельности и представляет результаты проведенных проверок Съезду.

4.8.3. Проверки деятельности Организации проводятся по поручению Съезда, Большого Совета, Президиума, Президента либо по требованию не менее одной трети членов Организации.

4.8.4. Ревизионная комиссия имеет право знакомиться со всеми документами, связанными с деятельностью Большого Совета, Президиума Организации, Президента и исполнительного аппарата.

4.8.5. По решению Съезда и Большого Совета проверку финансово-хозяйственной деятельности Организации может осуществлять независимый профессиональный аудитор.

4.8.6. Решения Ревизионной комиссии принимаются простым большинством голосов её членов.

4.9. Из числа наиболее уважаемых членов Организации на заседании Большого Совета формируется Совет старейшин, который является совещательно-консультативным органом и его решения носят рекомендательный характер. Состав Совета старейшин на утверждение Большим Советом представляется Президиумом.

На собрании Совета старейшин по представлению Президента избирается его председатель. Собрание Совета старейшин проводится по мере необходимости, но не реже одного раза в полугодие. Собрание считается правомочным при участии в его работе большинства членов Совета старейшин.

Решения Совета старейшин принимаются большинством голосов из числа присутствующих членов.

**5. Структура организации**

5.1. Организация имеет в своем составе региональные отделения.

5.2. В пределах территории субъекта Российской Федерации создается только одно региональное отделение. Решение о создании регионального отделения принимается на собрании учредителей, проживающих на территории соответствующего субъекта Российской Федерации, с последующим утверждением Президиумом Организации.

Региональные отделения действуют на основании настоящего Устава и могут приобретать права юридического лица после государственной регистрации.

5.3. Высшим руководящим органом регионального отделения является общее собрание членов регионального отделения, проводимое не реже одного раза в год. Общее собрание регионального отделения правомочно, если на нем присутствует более половины членов регионального отделения.

Нельзя не согласиться с автором статьи, что авторитет ЧНК и его президента сегодня невысок и несравним с популярностью А. Хузангая в самом начале 1990–х гг. Но дело не только и не столько в политике, сколько в интеллектуальных, моральных и иных качествах лидеров. *Если же коротко прокомментировать идеи авторов статей, то приходится удивляться, что они продолжают жить воззрениями конца 1980-х – начала 1990-х гг. и посыпают голову пеплом, разочарованные проводимой сегодня руководством республики политикой в сфере этнических отношений.* Почему-то в их рассуждениях за скобками остаются интересы русских, мордвы, татар и других этнических групп Чувашии. Ведь А. Хузангай проиграл президентские выборы 1991 г. Во многом потому, что он не был воспринят как руководитель республики в Алатырском и Порецком районах, заселенных в основном русскими. Безусловно, в оценке его политического кредо присутствовали передергивания, откровенная неправда, но высказывания, почему-то понимаемые большинством русских как изоляционистские, жесткое требование знания чувашского языка и попытки ввести профессиональные ограничения в связи с этим и т. п. не могли не вызвать отторжения. Отмена ряда положений Закона «О языках в Чувашской Республике», как противоречащих российскому законодательству, до сих пор вызывает обиду и разочарование недавних лидеров и активистов чувашского национального движения, людям, считающим себя причастными к политической деятельности, должно быть понятно, что игнорирование единого правового пространства не может быть дорогой к справедливым решениям. Но, видимо, призывы к благоразумию и здравому смыслу останутся, в данному случае, непонятыми.

Иван БОЙКО, Валентина ХАРИТОНОВА.
Бюллетень Сети этнологического мониторинга и раннего предупреждения конфликтов. Network for Ethnic Monitoring and Early Warning (EAWARN).
*№ 98, май, 2005 .*

## ÇĂЛĂНĂÇ ЕННЕ ÇУЛ КĂТАРТАКАН УХĂ ЙĔППИ, Е ЧĂВАШ ЭТНОТЫТĂМĔН ТĔРĔС ТĔНЧИНЕ ÇИТСЕ ПУЛĔ-ШИ?

*Кăçалхи чӳкĕн 11-мĕшĕсенче Шупашкарта Вырăс драма театрĕн çуртĕнче Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕ пуçарнипе чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕсен I конференцийĕ иртрĕ. Пин-пин çул хăйĕн тăван чĕлхине, йăли-йĕркине упраса ăруран ăрăва сыпăнса пурăннă халăхăн проблемисем нумай. Мĕн кĕтет чăваш халăхне тепĕр 50 е 100 çултан? Тĕпчевçĕсем валли çеç кирлĕ пулмĕ-и чăваш чĕлхи? Чăваш халăхĕ çинчен иртнĕ вăхăтра кăна калаçмалла пулмĕ-ши? Шăпах çак ыйтусен хуравне шырарĕ чăваш вĕрентӳçисен аслă пухăвĕ.*

Халăха чун кĕртекенĕ – чĕлхе. Çепĕç чĕлхемĕре пула пире чăваш тенĕ, республика ятне панă. Чăваш ятпах пурăнасчĕ-ха тесе лăпланатпăр, хамăр вара утăм хыççăн утăм каялла чакатпăр. Раççейре 2002 çулта иртттернĕ çырав чăваш халăхĕ пысăк хăвăртлăхпа чакса пынине кăтартса пачĕ. Эппин, пирĕн лăпланса ларма нимĕнле ирĕк те çук. Влаç тытăмĕнче ĕçлекенсемшĕн те çакă асăрхаттару вырăнĕнче пулмалла.

ЧНК президенчĕ Г.Н. Архипов доклад тунă май капланса килнĕ хивре ыйтусене çĕклеме пикенчĕ. Ялти, хулари, республика тулашĕнчи шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине, историне вĕрентнин шайĕ халăх пуласлăхĕн шанăçне тӳрре кăларать-и? Халĕ пулса пыракан вĕрентӳ тăван чĕлхене, чăваш халăхне упраса хăварма çителĕклĕ-и? Çук пулсан – пирĕн, влаç органĕсен, вĕрентӳ структурин, пĕтĕм обществăн мĕн тумалла? Ку çеç те мар иккен-ха: глобализаци авăрне çакланасран мĕнле сыхланмалла?

Ыйтусем, ыйтусем, ыйтусем... Пĕри тепринчен хивререх. Чуна лăплантаракан сăмах илтсе пулĕ-и текен шухăшпа ларчĕç конференцие хутшăннисем. Тен, çак ыйтусене зала пухăннисен умĕнче калама та кирлĕ марччĕ, мĕншĕн тесен кунта республикăра тата республика тулашĕнче асăннă ыйтусене халăха вĕрентес ĕçре, ял-хулара татса паракансем пухăннă. Чăваш проблеми малтан шăпах вĕсем çине тиенни пуриншĕн те паллă.

Докладчик, çакна туйса-тăр, хăйĕн сăмахĕнче çивĕч ыйтусен хуравĕсене те шыраса пăхрĕ, тăван халăха, чăваш чунне, чăваш чĕлхине упраса аталантарасси влаçри çынсенчен, тӳре-шараран нумай килнине палăртрĕ. «Малашне эпир сахалланса мар, хунаса пырсан, тăван чĕлхе кашни çыншăн калаçу, кану, юрă, пăшăрхану, наука чĕлхи пулса тăрсан çак ĕçе тунă элтепере тăван халăх ĕмĕр-ĕмĕр çветтуй вырăнне хурса хаклĕччĕ», – пĕлтерчĕ шухăшне Г.Архипов.

Чăнах та, ЧНК ертӳçине ăнланма пулать: уйрăм наци республикин президенчĕн историри вырăнĕ чи малтан халăх чĕрĕлĕхĕнче пулмалла. Экономика тĕлĕшĕнчен вăйлă аталаннă облаçсен кĕпĕрнаттăрĕсем килеççĕ те каяççĕ. Наци республикисен ертӳçисем вара (Тутарстанăн-и, Чăваш Енĕн-и е Мари Элпе урăх халăхăн-и) халăх асĕнче ĕмĕрсен хушши юлма пултарĕç. Эппин, экономикăпа этнос ыйтăвĕсем вĕсемшĕн пĕр танах пулмалла, пĕрне тĕплĕн татса панă чух теприн çине алă сулмалла мар пек.

Конференци чăваш проблемин вĕрентӳ ĕçĕнчи хăш-пĕр хуравне тупрĕ темелле. Республика тулашĕнчи йăхташăмăрсем те хăйсен шухăшне пĕлтерчĕç. Çак çитменлĕхсем: ача садĕнче тăван чĕлхене манса кайни, чăн чăваш ял-хулисенче вырăс шкулĕсене çеç йĕркелени, шкулсемпе наци гимназийĕсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентмелли эрнери сехетсене кĕскетни, «Тăван ен культури» урокĕсене расписанирен кăларса пыни – пурте хамăртан килет. Çапла пĕтĕмлетӳ тума вĕрентекенсене пĕрле пухăнса калаçни пулăшрĕ.

Нурлат районĕнче (асăрхăр: Тутар Республикинче вăл!) шкулсенче вырăс чĕлхипе литературине вĕрентме мĕн чухлĕ сехет уйăрса панă, чăваш шкулĕсенче те чăваш чĕлхипе литературине çавăн чухлех вĕрентеççĕ иккен. Пирĕн – Чăваш Республикинче пурăнакан чăвашсен – чăвашла вĕрентмелли сехетсемшĕн патшалăх чиновникĕсемпе кĕрешме тивет. Тĕлĕнмелле. Ют республикăра чăвашсене тăван республикăринчен аванрах пăхаççĕ теме те пулать капла. Тепĕр тесен, Тутарстана манăн ют республика тесе калас та килмест – унта чăваш районĕсем, ялĕсем пур. Этнос хакне, унăн пурнăçри варăнне вĕсем ыттисенчен аванрах ăнланни – тăван халăхăмăрăн телейĕ. Нурлатри тутарла авăрланнă чăваш этнотытăмăн тĕслĕхне манăн çăлăнăç енне çул кăтартакан ухă йĕппи вырăнне хурас килет. Ярăнса вĕçет вăл. Хăй хыççăн пыма чĕнет. Тĕрĕс тĕнчене çитĕпĕр-ши ун хыççăн кайсан?

Тутарсенчен вĕренмелли пайтах пирĕн. Паллах, унта та наци проблеми çук мар. Тăван халăха юратнипе пĕрлех урăх наци çыннине те кӳрентермесен пурте тĕрĕс тĕнчере вырăн тупăпăр.

Вĕрентӳçĕсене çакă та пăшăрхантарать: чăваш чĕлхипе литератури урокĕсенче тата ансат хутшăнусенче çеç тăван сăмахпа усă куратпăр, наукăра вара – çав тери сахал.

Кама та пулсан ятласа тиркессишĕн мар, капланса килнĕ шухăша çавăрса калама май тупас тĕллевпе пĕр тĕслĕх илсе кăтартасшăн. Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культурин факультечĕн чĕлхе пĕлĕвĕн кафедринче наукăра чылаях ăнтарса ĕçлекен ăслăлăх çыннисем пур. Вĕсенчен пĕри чăваш çамрăкĕсен пысăк тиражлă хаçатĕнче: «Чĕлхе аталанăвĕ çĕр-шыв хăвачĕпе çыхăннă», – тесе пĕлтерчĕ. Ахăртнех, вăл çак сăмахсемпе чĕлхери сăмахсем йышланса пынине палăртасшăн пулнă-тăр. Ах анчах, тăван чĕлхе çĕкленĕвĕ сăмах пуххи аслă пулнинчен кăна килмест-çке! Аталану – вĕççĕр-хĕрсĕр пулса пыракан процесс. Чĕлхере ăрусен çыхăнăвĕ татăлса пынă саманара уйрăм çын е ăру лексиконĕ пуянланни аталану картне лараймĕ.

Кунта çакна асăнса хăвармаллах: *экономика, экологи, инноваци тĕлĕшĕнчен кăна мар, пурнăç пахалăхĕн чи пысăк стандарчĕсене тивĕçтерекен регион туса хурассишĕн хĕрӳ кĕрешĕве тухнă Чăваш Енре тăван чĕлхе пĕлтерĕшĕ куллен чакса пырать.* Çакна конференцие хутшăннисем те çирĕплетсе кăларĕç.

Чӗлхе ӑслӑлӑхӗн ӗҫлевҫине, шел те, ҫапла хирӗҫлесе калама тивет: чӗлхе аталанӑвӗ ҫӗр-шыв хӑвачӗпе ҫыхӑнман, вӑл чун туртӑмӗнчен тымарланса ҫӗкленет. Чӗлхе халӑх чунне упрать. Ҫавӑнпа чӗлхене вӗрентес ӗҫ кӑмӑл туртӑмӗпе пулса пымасан вӑл вӗренекен ӑс-тӑнне тарӑна кӗрсе вырнаҫаймӗ. Кӑмӑл уҫҫине кӑмӑл кӑна уҫать. Саккун хистенипе, ячӗшӗн вӗрентнӗ чӗлхе килес ӑрусене ҫыхӑнтарасси иккӗлентерет.

Сӑмахпа пӗр майлӑ каласа ӗҫ-хӗле тепӗр майлӑ йӗркелесе пыни ӑҫтан ырри патне ҫитертӗр? Чӑваш Республикин аслӑ шкулсенче диссертаци канашӗ темиҫе те ӗҫлет. Вӗсенче наука ӗҫӗсене чӑвашла хӳтӗлеме хатӗрлемеҫҫӗ. Вӑл шутра — чӑваш чӗлхипе литературин тӗпчевӗсене те. Ҫавӑнпа та тӑван чӗлхемӗрӗн ӑслӑлӑх анинчи каҫалӑкӗ ансӑр. Наука пӗтӗмӗшле тенӗ пекех наукӑшӑн кӑна ӗҫлет. Виҫӗ ӗмӗр каялла хутла вӗренмен чӑваш вулӑсри «сӗтел пуҫӗ» умӗнче пуҫне чиксе тӑнӑ пекех, диссертаци канашне чӑвашлӑх хӑюсӑррӑн кӗрет. Ҫамрӑк ӑсчахсенчен хӑшӗ-пӗри чӑвашла ҫырнӑ наука ӗҫнех кама та пулин тара тытса вырӑсла куҫарттарать те хӳтӗленме мехел ҫитерет. Ӑслӑлӑхӑн ытти «уйӗнче», уйрӑмах техникӑпа информатикӑра, чӑвашлӑха парӑннӑ ҫынсем курӑнмаҫҫӗ. Пӗр сӑмахпа каласан, *Чӑваш Енри наука ҫурчӗ чӑваш халӑхне архива яма хатӗрленекен кантура аса илтерет.* Тепӗр тесен, тӑван чӗлхепе ҫемьере е урамра кӑна мар, наукӑра та туллин усӑ курмаллине пӗлмеҫҫӗ мар ӗнтӗ ӑс-хакӑл ӗҫлевҫисем. Эпӗ хӑйса каланӑ сӑмах вӗсемшӗн ытлашши те пулӗ. Ҫав вӑхӑтрах «ӑслӑлӑх лаҫҫи» чӑнчӑн пуласлӑх уҫҫи пултӑрччӗ текенсен ячӗпе чун хӳхлевне калани «шур сухалсемшӗн» кӳренӗҫ сӑмах пулмӗ тетӗп.

Ҫавӑн пекех конференцире ЧР вӗрентӳ тата ҫамрӑксен политикин министрӗн ҫумӗ С.В. Петрова доклад турӗ. Вӑл чӑвашлӑха аталантарас ӗҫ нумай енлӗ пулнине, чӑваш ачи тӗнче шайне ҫӗкленмелли ҫула чи малтан ҫемье, унтан шкул уҫса панине палӑртрӗ.

— Чӑвашлӑха аталантарасси ял шкулӗсенче ҫеҫ кирлӗ пек йӗркеленсе пырать, Чӑваш Енри мӗн пур шкулӑн 65 процентчӗ тап-таса чӑваш шкулӗсем, — савӑнса пӗлтерчӗ Светлана Владимировна.

Ҫиелтен пӑхсан ҫак цифрӑшӑн чӑн та хӗпӗртемелле пек, анчах ансат математика шутлавӗ тусан куҫ умне пачах урӑхла ӳкерчӗк тухса тӑрать. Республикӑра чӑваш шкулӗсен шучӗ пысӑкрах пулин те вырӑс шкулӗсенче вӗренекен ачасен йышӗ чӑвашлисенчен икӗ хут нумайрах, мӗншӗн тесен хула шкулӗсенче вӗренекенсем ялтисеннинчен темиҫе хут йышлӑрах.

Министр ҫумӗ «Вӗрентӳ пахалӑхӗ — 1-мӗш номерлӗ проблема» текен тӗллевпе кӳлӗнсе ӗҫлемеллине пӗлтерчӗ пулин те — ӗҫ пахалӑхне ҫӗклессишӗн лартнӑ хӑш-пӗр ыйтӑва хуравламасӑрах хӑварчӗ. «Тӑван ен культурине» вӗрентекенсем уҫӑ ҫырура тата «Хыпар» хаҫатра (2005, ҫу, 12) «Тымарсӑр йывӑҫ пек пулас марччӗ» статьяра ҫӗкленӗ ыйту (ӑна пухӑннисем тепӗр хут та хускатрӗҫ) ҫаплипех уҫӑ юлчӗ-ха. Сӑмах «Тӑван ен культурине» ҫӗнӗ вӗренӳ планӗнче хӑйсене  уйрӑм предмет пек палӑртманни пирки пырать. Ҫак предмета ҫул пама е сирсе хӑварма шкул директорӗсене ирӗк панӑ. «Престижлӑ» мар предмета суйласа илнӗ чух халӑх историйӗпе культурине вӗрентесси сыхланса юлмасан та пултарать. Халӑх шӑпине шкул директорӗсен татса памалла мар.

Конференци чӑваш халӑхӗ валли ҫӑлӑнӑҫ ҫулӗ шырарӗ. Шел те, патшалӑх тытӑмӗнчи тӳре-шара наци упранаслӑхӗн тӗп шӑнӑрӗ чӗлхе пулнине шута илмест, уншӑн экономикӑпа этнос ыйтӑвӗсем тан мар. Ҫак танмарлӑх чӑваш тӗнчине ҫӗр-ҫӗр ҫул пусӑрӑнтарса пынӑран обществӑна чире ячӗ. Ӳтрен-ӳте вирус пек сикекен чир мар вӑл, чуна чул пек пусаракан йӗрке тӑрӑм чӑваш чунне систермелле сусӑрлатать. Ҫакӑ ӑна паян та ҫӑлӑнӑҫ енне шӑхӑрса вӗҫекен «ухӑ йӗппи» хыҫҫӑн ыткӑнма чӑрмантарать.

Чӑваш этнотытӑмӗн тӗрӗс тӗнчине ҫитесси пулӗ-ши текен ыйту каллех уҫӑ юлчӗ. Суя тӗнчере савӑнӑҫӗ те суя, ташши-юрри те чуна лармасть.

Тен, хӑшӗ-пӗри чӑваш чӗлхипе калаҫса пурӑнакан халӑхӑн яваплӑхӗ епле пысӑк пулнине чухлаймасть те. Чӑвашсем тӗнче пуҫламӑшӗн вӑрттӑнлӑхӗсене ас тӑвакан чӗлхепе калаҫаҫҫӗ. Этемлӗхпе ӑс-тӑн аталанӑвӗшӗн ҫав тери кирлӗ вӑрттӑнлӑхне — тӑван чӗлхемӗре! — упраймасан пире килес ӑру каҫармӗ. Ҫак ҫылӑха чӗре ҫине илес мар тесен чӑваш пулсах пурӑнар. Чун сывӑ чух ӳт-пӳ те таса, сывлӑхлӑ пулӗ.

Николай ИШЕНТЕЙ.

*«Хыпар», 16.11.2005, 220–221№.*

## ЧӐВАШ ЧУНӖЛЛӖ ҪЫНСЕМ ПУЛСА ӲСЧӖР

*Чӑваш наци конгресӗн Президиумӗн черетлӗ ларӑвӗ Г. Лебедев ячӗллӗ интернат-лицейра иртрӗ. Унта Шупашкар хула шкуӗсенчи чӑваш чӗлхи учителӗсем те хутшӑнчӗҫ.*

Тӗп ыйту — хулара чӑваш чӗлхине вӗрентесси. Шкулсенче вӑл эрнере миҫе сехет пулмаллине, классене пайласа вӗрентессине тахҫанах татса панӑ пулин те — пӗтӗмпех йӗркеллӗ теме ҫук-ха. Ҫакна ЧНК Шупашкар хула мэрийӗпе килӗшсе иртнернӗ тӗрӗслевсем те ҫирӗплетеҫҫӗ. Хӑшпӗр шкулта сехетсен шутне чакарнӑ, классене пайлассине пӑхӑнмаҫҫӗ. Тӗлӗнмелле те — ҫакна ашшӗ-амӑшӗн ирӗкӗпе сӑлтавлани те тӗл пулать иккен. Ӑнланмалла мар: чӗлхесем ҫинчен калакан саккунра уҫӑмлӑн палӑртса хӑварнине мӗншӗн пурнӑҫа кӗртмеҫҫӗ? Тӗрӗслевсем хыҫҫӑн ҫитменлӗхсене пӗтермелли йышӑну хатӗрлесе шкулсене ярса панӑ.

ЧР вӗрентӳпе ҫамрӑксен политикин министрӗн ҫумӗ С.В. Петрова пӗлтернӗ тӑрӑх — лару-тӑру йӗркене кӗме кирлӗ. Хула шкулӗсене пурне те министерство хушӑвне ҫитернӗ. Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗнчен вӗсенчен кашниех чӑваш чӗлхи валли эрнере виҫӗ сехет уйӑрма, класра 25 ачаран кая мар пулсан икӗ ушкӑна пайласа вӗрентме тивӗҫлӗ. Ҫак яваплӑхран пӑрӑнма вӑтам шкулсен кӑна мар, лицейсемпе гимназисен те нимӗнле сӑлтав та пулма пултараймасть. Ҫавӑн пекех тепӗр ырӑ хыпар та пур: кӑҫалтан 11-мӗш класс пӗтерекенсем чӑваш чӗлхипе тата литературипе сочинени ҫырса экзамен тытаҫҫӗ.

Чӑваш наци элитине хатӗрлеме уҫнӑ лицейра ӗҫсем мӗнлерех-ши? ЧНК президенчӗ Г.Н. Архипов Президиум членӗсене кунта, тӗпрен илсен, унӑн шӑпи пирки калаҫма пухнине пӗлтерчӗ. Республикӑри пултаруллӑ ачасем валли уҫнӑ лицей пӗр вӑхӑтра хӑйӗн сумне ҫухатма пуҫланӑччӗ. Икӗ ҫул каялла ертӳҫӗ улшӑннӑранпа ӗҫ-хӗл йӗркене кӗрсе пыни курӑнать. Чӑваш чунӗллӗ ҫынсем ӳстерес тӗллеве пурнӑҫа кӗртме чылай улшӑну тунӑ. Унччен чӑваш музыкине 9-мӗш класа ҫити кӑна вӗрентнӗ, пӗлтӗртен 11-мӗш класс таранах вӗрентме пуҫланӑ. Музыка уйрӑмӗнче чӑваш чӗлхипе пӗлӳ парасси те ҫителӗксӗр пулнине шута илсе 5–8-мӗш классенче чӑвашла лайӑх пӗлекен ачасене — пӗр ушкӑна, вырӑс ачисене тепӗр ушкӑна уйӑрса вӗрентеҫҫӗ.

— Кӑҫал вун пӗрмӗшсен чӑваш чӗлхипе тата литературипе сочинени ҫырса экзамен тытмаллине пӗлтерсен вырӑс ачисене те билет тӑрӑх е реферат ҫырса экзамен тыттарма йышӑнтӑмӑр, — тет лицей директорӗ С.П. Григорьев. — Ачасене тӗрлӗ енлӗ аталантарма ятарлӑ курссем йӗркелеме май пур. Попечительсен канашӗ учительсене хушса тӳлеме укҫа-тенкӗпе тивӗҫтерме нихҫан та хирӗҫ мар. Тӗслӗхрен, чӑваш филологийӗпе культурологи уйрӑмӗнче литература теорийӗпе сцена искусстви вӗрентме пуҫларӑмӑр. Акан 28-мӗшӗнче, акӑ, сӑнав-урок иртет, ачасем чӑвашла спектакль лартса параҫҫӗ. Музыка класӗнчи вырӑс ачисем Мускавра чӑвашла юрласа, чӑваш ҫи-пуҫӗпе тӗлӗнтерсе малти вырӑнсене тухса килчӗҫ. Ку та савӑнтарать.

Вӗренсе тухсан лицей ҫамрӑкӗсен 99 процентчӗ аслӑ шкула ҫул тытать. Ытларахӑшӗ — педуниверситета. Директор шучӗпе, кунта ҫак вӗренӳ заведенийӗпе ҫыхӑну ҫирӗп пулни витӗм кӳрет. Педуниверситет преподавателӗсем лицейра тӑтӑшах пулаҫҫӗ, хӑйсен пулас студенчӗсене малтанах кураҫҫӗ, професси суйласа илме пулӑшаҫҫӗ. Тата педуниверситет сӗнекен профиль ҫамрӑксене тивӗҫтерет. Сӑмахран, «чӑваш чӗлхи–акӑлчан чӗлхи», «чӑваш чӗлхи–юриспруденци», «чӑваш чӗлхи–вырӑс чӗлхи», «чӑваш чӗлхи–пуҫламӑш шкул» специальноҫсемпе ӗҫе вырнаҫма та ҫӑмӑлрах. Шел, юлашки ҫулсенче Чӑваш патшалӑх университечӗпе ҫыхӑну вӑйсӑрланнӑ. Ҫавӑнпах пулӗ — лицейҫӑсем унти ҫӗнӗ специальноҫсем ҫинчен

пĕлсех те каймаççĕ. Кăçал, акă, чăваш филологийĕн факультетĕнче культуролог-йĕркелÿçĕ хатĕрлекен специальноç уçăлать.

Çапах та, Г.Н. Архипов шухăшĕпе, лицейра тата тĕллевлĕрех ĕçлемелле. Чăваш историне лайăх пĕлекен педагог кирлĕ. Истори урокĕнче учителĕн тăван халăх историне вĕрентме 15 минут та пулин уйăрмаллах. Çивĕч тепĕр ыйту – лицейра вĕренекенсенчен 60 проценчĕ кăна ял ачисем пулни. Наци элитине хатĕрлес тетпĕр пулсан пултаруллă чăваш ачисене аталанма май туса памалла-çке. Тен, вĕренме килекен сахалланни кашни районтах хăш-пĕр предмета тарăн вĕрентекен шкулсем е лицейсем пуррипе çыхăннă. Демографи лару-тăрăвĕ те, ачасем сахал пулни те витĕм кÿрет-тĕр. Ашшĕ-амăшĕн интернат-лицейра вĕреннĕшĕн тата пурăннăшăн тÿлемелле пулни те чăрмантарма пултарать. Пĕр ачашăн чи пысăк тÿлев – уйăхра 1140 тенкĕ. Тутарстанра, тĕслĕхрен, 270 тенкĕ. Пултаруллă ачасене патшалăх пулăшасси пирки нумай калаçатпăр. Тен, ашшĕ-амăшне тÿлеврен пачах хăтармалла? Ларура çак ыйтупа ĕçлемелли пирки те каларĕç.

Интернат-лицея малашлăхра мĕн кĕтни уçăмлах мар-ха. Халĕ унăн ятĕнчен «наци» сăмаха кăларса пăрахнă. Çапла майпа унăн статусне пĕчĕклетнĕ. Тата Раççей Федерацийĕн «Тивĕççене пайласси çинчен» саккунĕпе килĕшÿллĕн 2008 çултан интернатсене муниципалитет аллине параççĕ. Апла тăк республикăн интернат-лицейĕ Шупашкар хулин пулса тăрать. Ун чухне вăл пултаруллă ял ачисене аталантаракан вĕренÿ заведенийĕн тивĕçне сыхласа хăварайĕ-ши? С.В. Петрова Чăваш наци конгресне ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсемпе пусăру ушкăнĕ йĕркелесе РФ Патшалăх Думине саккуна ку тĕлĕшпе улшăну кĕртес ыйтупа тухма сĕнет. Çав вăхăтрах Вĕрентÿ министерстви лицейра республикăри чăваш чĕлхипе литературин çĕнĕ концепциллĕ чи лайăх тĕслĕх кабинетне йĕркелесшĕн. Унта ял учителĕсене курма-вĕренме илсе килĕç.

Тăван чĕлхене упрас, аталантарас тĕллевпе тунă тепĕр утăм – кашни районта чăваш чĕлхине тарăн вĕренмелли пĕрер класс уçма йышăнни. Ку ыйтупа министерствăра тĕллевлĕ ĕçлеççĕ. Чăваш чĕлхин класĕсене уçмалли 22 шкула палăртса хунă ĕнтĕ. Çак классене ăслăлăх, меслетлĕх енчен пулăшса, тĕрĕслесе тăракан пĕрер наука ертÿçи кирлĕ. Ку ыйтăва ЧНКпа, ЧПУпа, ЧППУпа пĕрле çывăх вăхăтрах татса парасса шанаççĕ. Çĕнĕ вĕренÿ çулĕнчен чăваш чĕлхине тарăн вĕрентекен классенче занятисем пуçланĕç.

Алина ЛУКИЯНОВА.
*«Хыпар», 14.04.2006, 67№.*

## ЧĔРĔЛĔХ КИРЛЕХ!

*Çак эрне вĕçĕнче Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн ларăвĕ иртмелле. Шупашкара Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчен ун членĕсем килсе çитĕç. Инçе çула хыçа хăварса çуралнă тăван кĕтесе килсе курасси кашниншĕн пысăк савăнăç ĕнтĕ. Çапах та пĕр тĕллев – пурне те пĕтĕçтерекенни, пĕр чăмăра пуçтараканни те – пулмалла-çке. Конгресс çав тĕллеве, ман шухăшăмпа, чăвашлăх ĕçĕнче курать. Çулталăк хушшинче мĕн тунă, хăш ыйтупа пысăк ĕç иртгернĕ тата ытти пирки те пулĕ калаçу. ЧНК президенчĕ Г.Н.Архипов, вице-президентсем доклад тăвĕç, инçетрен килнĕ йăхташăмăрсем тухса калаçĕç.*

Кăшт йăнăшатăп пулсан та – аякри тăванăмăрсем мĕн пирки калаçасси, вĕсене мĕн кулянтарни, савăнтарни пирки чухлакалатăп темелле. Е хамăр вăхăтран-вăхăт çитсе килетпĕр унта, е хăйсем çырупа пĕлтереççĕ. Сăмахран, Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăвашсемшĕн чунранах савăнатăп. Вĕсем хăйсен пысăк ĕмĕтне, тĕллевне кăçал пурнăçа кĕртрĕç. Аслă Вĕрентекенĕмĕрĕн И.Я. Яковлевăн палăкне уçрĕç. Ун пирки тахçантанпах калаçаттăмăр, кирлĕ, кирлĕ теттĕмĕр пулсан та – ĕçе вăхăтра пуçăнайман. Облаçри чăваш наци культура автономине В.И. Сваев ертсе пыма пуçласан «лав» тинех вырăнтан тапранчĕ. Ятарлă конкурсра çĕнтерсе Чăваш Енри пултаруллă та ăста скульптор, сăмах май, Чĕмпĕрсен ентешĕ, В.П. Нагорнов çыпăçуллă, кăмăла каймалла палăк хатĕрлерĕ. Тавах Владимир Ильич Сваева пысăк ĕçе вĕçне çитернĕшĕн. Тата тепĕр самант вара унăн чĕрине кушак чăрмалană пекех ыраттарать пулĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ – такамсем Аслă Вĕрентекенĕмĕрĕн палăкĕ çывăхĕнчи сутă хунарĕсен юписене касса кайнă. Мăшкăл мар-и?

Эстонири чăвашсен пĕрлĕхĕн пуçлăхĕ И.В. Захарова кăçал хăйсен патĕнче чăваш тĕрĕ, тум ăстисене пуçтарма пултарчĕ. Питĕрти тăванăмăрсем республикăри сумлă коллектива – Чăваш академи драма театрне – йышăнчĕç. Казахстанри Павлодарти ентешĕмĕрсем «Раççей çăл куçĕсем» фестивале хăйсем килсе кайрĕç.

Çапла кашни облаçри, крайри, республикăри чăваш пĕрлешĕвĕ пирки мĕн те пулин лайăххине каламалли пурах. Сăмах май, иртнĕ çул вĕсен йышĕ (Раççейре тата чикĕ леш енче) 69-ччĕ, кăçал тата виççĕ хушăнчĕ. Кашни хăйĕн савăнăçĕпе, хуйхипе пурăнать. Çак савăнăçа тата чуна канăç паман япалана пĕтĕм халăхпа пайласшăн. Ку енĕпе Чăваш наци конгресĕ хăйĕн тивĕçне пурнăçлать темелле. Ку енĕпе ăна ЧР Культура министерстви те пулăшса пырать. Аякка каяс çула та пĕрле калаçса татăлса тухаççĕ вĕсем.

Çапах та çак ĕçсемпе çеç çырлахмалла-и хăватлăн та мухтавлăн янăракан Чăваш наци конгресĕн? Çаксем, асăнса тухнисем, ЧНК ĕç-хĕлĕн пĕр пайĕ çеç пулмалла пек. Сук, вăл тапратнă тата хускатнă ĕçсене сивлеместпĕр (пĕлтĕр, сăмахран, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен конференцине иртгернĕччĕ, Шупашкар хула администрацийĕпе çыхăну тытса ĕçлесси пирки килĕшÿ тунăччĕ тата ытти те). Апла пулин те тем çитмест ЧНК ĕçĕнче. Чĕрĕлĕх тесен тĕрĕс пулĕччĕ-ши? Шухăшлăр-ха: хăй вăхăтĕнче А.П. Хусанкай Тĕнчене тухайман халăхсен организацийĕпе çыхăну йĕркелеме пултарчĕ. ЧНКн паянхи ĕçченĕсем те çак тĕллеве – тĕнчене тухассине, ун умĕнче хамăрăн шухăша палăртассине, кăтартассине (чĕлхе, культура урлă) пурнăçласа пымалла мар-и? Ахаль, кулленхи ĕçпе çеç пурăнсан Конгресс ĕçĕ кичемленсе, пĕр евĕрленсе кайма пултарать. Чăннипех чĕрĕлĕх, çĕнĕ вăй курас килет ЧНК ĕç-хĕлĕнче. Çитес шăмат кун тĕп хулара пухăнакан Мăн Канашăн членĕсем те манăн шухăш-кăмăлăмпа килĕшеççĕ пулĕ тетĕп.

Тата тепĕр самант та шухăшлаттарать: Мăн Канаша е Аслă пухăва тулайран килнĕ пуçлăхсем е ахаль делегатсем вырăнта тăван чĕлхепе вулама кĕнекесем, хаçат-журнал çукки пирки хурланса каласа кăтартаççĕ. Анчах та тĕлĕнмелле пулса тухать: çав çынсемех чăваш халăх хаçатне «Хыпара» çырăнса илме тăрăшмаççĕ. Сăмах май, хаçатра республика тулашĕнче пурăнакан ентешĕмĕрсем валли уйăхра пĕрре «Чăваш тĕнчи» страница кăларса пыратпăр. Вулакансенчен хăшĕ-пĕри «Чăваш тĕнчине» хаçат пек хăй тĕллĕн кăларма ыйтакансем те пур. Анчах каллех шухăш канăç памасть: ăна çырăнса илес текенсем йышлă пулĕç-ши?

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 30.11.2006, 226№.*

## ЧĔЛХЕ ПĔТСЕН – ХАЛĂХ ПĔТЕТ

**«Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕн [ЧНК вице-президенчĕн] Алексей ЛЕОНТЬЕВĂН ыйтăвĕсене ЧНК президенчĕ Геннадий АРХИПОВ хуравлать**

**– Геннадий Николаевич! Питех те ансат ыйту, тен, ансатах та мар: мĕн вăл саншăн – Тăван çĕр-шыв, тăван халăх, тăван культура, тăван чĕлхе?**

– Тăван çĕр-шыв, тăван халăх, тăван культура, тăван чĕлхе... Чи малтанах атте-анне, çемье, тăван тавралăх. Çуралса ÿснĕ ялăм – Етĕрне районĕнчи пĕчĕк Анат Явăш, ун хĕррипе юхакан Выла юхан шывĕ. Çыран хĕрринче çара уран сахал мар чупнă, шыва кĕнĕ. Тăван шкул, пĕрле вĕреннĕ ачасем, пĕрремĕш тусăмсем. Тăван культура вăл – чун лăпкăлăхĕ, чун ыратăвĕ, чăваш халăхĕн юррисем. Культура кашнин чунĕнче пулмалла: тăван чĕлхе, юрăсем урлă. Авалхи культура ламран лама куçни савăнтарать.

**– Пурнăç – кашни кун уяв. Çапла туякансем те, ахăртнех, пур-тăр. Аса илсем: пурнăçунти чи йывăр тапхăр-пулăм тата – чи хавхаланулла, хĕпĕртÿллĕ-савăнăçлă вăхăт-самант?**

– Паллах, кашни кун – уяв-пурнăç! Атте-анне кун çути кăтартнă пулсан –кашни куна хакламалла. Çапах та эпир пурнăçа хакламa пĕлместпĕр. Тĕрĕссипе, пурнăçăн илемне кашниех ăнланаймасть.

Ку – пĕлтерĕшлĕ япала. Хĕпĕртӳллĕ, илĕртӳллĕ самант, ман шутпа, пĕрремĕш юрату, салтакран таврăнни, вĕренме кĕни, çемье çавăрни. Салтакран таврăнни асăмран тухмасть: тăван тăрăха уйсем урлă çуран утнăччĕ, ялăма çитиччен аннем кĕтсе илчĕ.

1989 çулта республикăн Аслă Советне депутата суйланнă чухне савăнăç пулнă. Иккĕмĕш хутĕнче вара савăнма та пĕлмен. Ара, политикăна кĕрсе кайнă, хăнăхнă. 1994 çулта Патшалăх Канашĕн пĕрремĕш суйлавĕн депутатне суйланнă чух çамрăк пулнă, журналистикăра сакăр çул ĕçленĕскере халăх шаннă-çке! Нимĕнле агитацисĕр, укçа-тенкĕсĕр çĕнтернĕ. Маншăн 78 процент сасăлани хăйсене  май савăнăç мар-и-ха? Халăх шанни – пысăк хак.

Пурнăçри чи йывăр тапхăрсем, пулăмсем сывлăхпа çыхăннă. Ăнланса илмен инкек-синкек, вилĕмпе юнашар пулнă самант чылай пулнă. Ача чухне, ун чухне шкула та кайман-ха, Выла хĕрринче çӳренĕ май шыв мĕн тарăнăшне тĕрĕслесе пăхма шутларăм. Ара, çĕнĕ атă илсе панă вĕт! Пăр кайса пĕтменрен пусрăм çеç, пăнкăлт! кăна шыва кĕрсе ӳкрĕм. Шыв тĕпĕнче сарă тĕс курăнать... Пăртан ярса тытрăм та пуçа шывран кăлартăм. Аякрах мар аслăраххисем конькипе ярăнатчĕç. Володя Илларионов туртса кăларчĕ. Хам мĕнле хăрушлăха лекнине ун чухне ăнланма та пултарайман.

Тепре... Хире пăрça çиме çӳреттĕмĕр. Çил арманĕ тăррине хăпарса çиеттĕмĕр, самай тăррине улăхаттăмăр. Пĕрре çапла ман умра хăпараканни сăмсаран урипе лектерчĕ, татах лекесрен хăраса каялла чакрăм... Ун чухне иккĕмĕш класра вĕреннĕ-ши? Арман чулĕ çумĕнче куçа уçрăм. Телее, алă кăна мăкăлтаннă. Ялта Тарье аппа пурччĕ. Вăл ыратакан алла пĕрре туртрĕ те вырăнне лартрĕ. Ачасем яланах шухă çав.

Студент чухне те вилĕмпе юнашар пулса куртăм, Шупашкар районĕнчи Хыркассине семинара кайнăччĕ. Туссем стадионра чупаççĕ, эпĕ турник çинче «хĕвел» тăваттăмччĕ. Малтан аванах çаврăнтăм, кайран алăсем çыхăнмасăр вĕçерĕнсе кайрĕç те ӳкрĕм. Чул çине... Çурăм шăмми хуçăлнă. Виçĕ уйăх ытла больницăра выртрăм. Хускалмасăр выртасси – тамăк. Ун чухне пуçа темĕнле шухăш та кĕрет. «Çитет, кун чухлĕ пурăнтăм, тавах Турра», – теттĕм. Майĕпен ура çине тăтăм. Чылай вăхăт гипс корсетпа çӳреме тиврĕ. Студент чухне правурччĕ, ССО командирĕччĕ. Сывалнă хыççăн каллех ССОна таврăнтăм, «Бригантина» ушкăнăн командирĕ пулнă. Лайăх ĕçленĕшĕн республикăн Министрсен Кабинечĕн тата Аслă Совет Президиумĕн Хисеп хутне те тивĕçнĕччĕ. Çапла, яланах малти вырăнта пулнă.

Хальхи йывăр самантсем ĕçпе çыхăннă пулĕ. Сăлтавсăр кӳрентерни, ăнланманни пулать. Çакă малтан чуна питĕ виретчĕ, чĕре сывăхне илеттĕм, халĕ унашкалах мар, ăнланма пуçларăм. Кашни çын тĕрлĕрен. Хăшĕ-пĕри хăй пирки çеç шухăшлать. Сывлăха укçалла илейместĕн. «Пурнăç – кашни кун уяв», – тенине больницăра выртнă чух ăнлантăм. Пурнăçа пачах урăх енчен пăхма пуçларăм.

**– Чăваш наци конгресне йĕркеленĕренпе 14 çул иртрĕ. Унăн стратеги тĕллевĕсем пурнăçланчĕç е пурнăçа кĕрсе пыраççĕ теме пултаратăн-и?**

– Паллах, I съездра палăртнă тĕллевсем паян та пур. Тĕрех каламалла, вĕсене пĕр çулта мар, вунă-çирĕм çултан та вĕçне çитереймĕн. 1992 çулта палăртнă ĕçсем питĕ пысăк. Вĕсем улшăнмаççĕ, чылайăшĕ пурнăçланнă. Çапах та тăван чĕлхе ыйтăвĕ паянхи кун та – тĕп ыйтусенчен пĕри. Ятарлă программа та пур. Шăпах çавна йышăннă чухне Чăваш наци конгресне йĕркелесе ятăмăр та ĕнтĕ. Саккунсем пурнăçланаççĕ-и-ха? Çук. Çапах та Чăваш Республикин интернет-телерадиохыпарлав порталĕ ĕçлеме пуçлани хавхалантарать. Халĕ телекуравпа радиори чăваш передачисене аякри йăхташăмăрсем те курĕç, илтĕç. 1992 çулта республикăри кашни шкулта чăваш чĕлхине 3 сехет вĕрентме палăртнă пулсан – кăшт каялла чакнăччĕ, икшер сехет хăварнăччĕ. Вĕрентӳ министерствипе, хула администрацийĕпе çивĕч калаçусем иртнĕ хыççăн икĕ çул хушшинче çак ыйту татăлчĕ.

**– ЧНКн паянхи чи пысăк ыйтăвĕ-тĕллевĕ?**

– Тĕллевĕ... Унччен пире валли Чăваш патшалăх пукане театрĕнче пĕр пĕчĕк пӳлĕм уйăрса панăччĕ. Пурте тĕлĕнетчĕç. Патшалăх пулăшнипе çуртлă пултăмăр. Юсарăмăр. Халĕ хамăрăн штаб-хваттер пур. Кашни кунах аякри чăвашсем килеççĕ, шăнкăравлаççĕ. Кунне аякран килнĕ пилĕк çын кĕрсе тухатех. Хăшĕ-пĕри, паллах, пирĕн кулленхи ĕçе курмасть.

Чĕлхе пĕтсен – халăх пĕтет. Пирĕн ăна упраса кăна хăвармалла мар, аталантармалла. Чăваш халăхĕ халсăрланса пыни мар, нумайланни, йышне ӳстерни кирлĕ. РФ Этнологи институчĕн ертӳçипе В.А. Тишков академикпа курса калаçма тӳр килнĕччĕ. Вăл наци ыйтăвĕсене тĕпчекен «тĕп çын». Валерий Александрович шухăшĕпе – паян çынсем сахалланса пыни, чĕлхе пĕтме пуçлани тата урăх тĕне йышăнни, тĕрлĕ наци халăхĕ (сăмахран, чăваш е тутар) хăйсене вырăс тесе çыртарни – вырăнлă япала. «Пурте вырăссем пулаççĕ, – тет. – Наци ыйтăвĕ çухалать». Ку – хăрушă япала. Раççей Федерацийĕнчи наци пĕрлешĕвĕсен ертӳçисем питĕ пăшăрханаççĕ. Ара, Тишков Раççей Президенчĕн В.В. Путинăн канашçи-çке! Наци политики Раççейре, тĕрĕссипе, çук. Ăна тыткаласа пырам пек тăваççĕ-ха, никам та ĕçлемест-çке. Пирĕн, паллах, ăна пăхса тăмалла мар, хамăрăн ĕçлемелле. Пирĕн тĕллев пур. Чĕлхене упрамалла. Çавăнпа та шкулти виçĕ сехетпе кăна лăпланса лармалла мар. Шкултан вĕренсе тухакан ача чăваш пултăрччĕ тесе тăрăшмалла. Эстонсене ăнланатăп. Патшалăх çине тăнипе эстон чĕлхипе калаçаççĕ, официаллă çырусене те эстонлах шăрçалаççĕ. Урăхла май çук. Эпир вĕсенчен мĕнпе кая?

**– Эсĕ чăваш диаспорине нумай тухса çӳретĕн. Республикăмăр тулашĕнчи йăхташăмăрсен пĕтĕмĕшле сăн-сăпатне (портретне) уçса парсам.**

– Сăн-сăпачĕ пĕр пек мар çав. Шухăшлавĕ те расна. Вак ыйтăва хускатнăшăнах национализмпа айăпласран хăраççĕ. Йăхташăмăрсен унти ертӳçĕсемпе асăрханулăрах пурăнма тивет. Культурăна, чĕлхене аталантарас ыйтура кăштах мĕскĕнленме те лекет-тĕр. Çапах та вĕсем чун хавалĕпе туртăнма, чун мĕн ыйтнине пурнăçлама тăрăшаççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен – чылай чухне Раççейре наци политики çукки куç кĕрет. Юрать, хальччен чăваш чĕлхи пулнă, калаçнă, ăнлантарса пама пултарнă, ачисене вĕрентнĕ... Тепĕр 50 çултан мĕн юлать? Паллă мар. Вĕсен урăхларах лару-тăру. Чăваш национализмĕ вара çук. Пулман та.

Самар тăрăхĕнче чăваш шкулĕсене хупма тытăнсан унти чăвашсем Раççей Патшалăх Думин кашни депутачĕ патне çыру çырма ӳркенмен. Чиновниксемпе кĕрешме те, вĕсене суда пама та хăраман. Хупнă шкулсене каялла уçтарчĕç. Раштавăн иккĕмĕшĕсенче унта фольклор фестивалĕ иртет. Вăтăр ытла коллектив хутшăнать. Ачасен ушкăнĕсем те иксĕлми пуянлăха упрассишĕн тăрăшни, ĕçлени курăнать. Эпир кунта çавăн пек фестивальсем ирттерме те ăс çитерейместпĕр-çке! Вĕсене вара тĕп чăвашсенчен аякра пурăнни пĕтĕçтерет. Кунта эпĕ – чăваш, эсĕ – чăваш, пурте – чăваш... Хăнăхнă. Аякри ентешсен упранса та чееленсе пурăнма тивет. Чăвашлăх ыйтăвĕсемпе шухăшлав вара пирĕн пĕрешкелех.

**– Оппозици... Çук-ха, ку сăмахпа усă курас килмест, çапах та ЧНК – политика партийĕ мар, унăн идеологийĕ – чăвашлăх, эппин, çак идеологи халăхăмăрăн паянхи лару-тăрăвĕшĕн кулянакансене тата пархатарлă малашлăхĕшĕн чун-чĕререн хыпса çунма хатĕр çынсене пĕрлештерет. Анчах хăйсене чăвашлăхшăн ĕçлетпĕр текен ушкăнсем е уйрăм çынсем ЧНКна, унăн президентне критиклени, урăм-сурăм ятлани те сахал мар-çке. Мĕншĕн?**

– Пĕр енчен, тавлашни лайăх та пуль. Тепĕр чух ĕçе хăнăхсан пĕр пек япала йăлăхтарать. Хăнăхмалла мар. Конструктивлă критика кирлĕ. Вăл йĕркеллĕ. Ăнланмасăр критиклени тарăхтарать. Штатра – 11 çын. Тытса тăратпăр вĕт-ха. Патшалăхран хăш-пĕр мероприятие ирттерме çеç укçа илетпĕр пулсан та... Ĕçлекен çук пулсан – камăн вăй хумалла? Паллах, кĕвĕçекенсем çук мар. Çитменнине тата кашнин – хăйĕн тĕллевĕ. Эпир пурте пĕр-пĕрне пĕлетпĕр. Çĕнни мĕн калама пулать? Кам чăваш идеологийĕпе чăвашлăх пирки калаçать? Ăсчахсене пĕлетпĕр... Тепĕр съезд кирлĕ-и? Е чăваш интеллигенцине тепĕр хут

пухса калаçни усса каять-и? Пухăнса калаçнинче нимĕн япăххи те çук. Вăл – хăйсене евĕрлĕ утăм, ĕç. Паян ЧНКна пур енчен ятлакан та пур. Ĕçлес тесе çунакана чармастпăр. Тархасшăн, ĕçлĕр. ЧНК ячĕпе çырупа тухмалла-и е тата ытти ыйту – килĕрех, алăк уçă. Тĕрĕссипе, Раççей Президенчĕ патне те çитме пулать. Сăмахран, республика ертÿçипе эпир тăтăшах тĕл пулатпăр, шухăшсене пĕлтерсех тăратăп. Вăрттăнлăх çук. Чăвашлăх енĕпе ĕçлеме пуçăнсан çынсем сахалли пăшăрхантарать. Кама-тăр ĕç хушатăн, вăл вара вăхăт çук тет. Ман шутпа, критиклекенсенчен 90 процентĕ çакăн пек çынсем. Пуш парappан çапакансене Президиума та кĕртмерĕмĕр. Пĕтĕм ĕç малалла кайрĕ. Архипов çеç чупнипе нимĕн те пулмасть çав. Анчах çынсене укçа-тенкĕсĕр ĕçлеттерме питĕ йывăр. Укçасăр ĕçлекенсем пур, вĕсене тупмалла, калаçмалла, ăнлантармалла. ЧНКн пин тĕрлĕ ыйту, пĕр çын çеç туса çитерейместь. Урăм-сурăм ятланине йышăнмастăп. Каларăм ĕнтĕ: ырă шухăшпа пулсан – тархасшăн, килĕр, ĕçлĕр. Пшик! çеç ан пултăрччĕ.

**– ЧНК Культура министерствин функцийĕсене кăна пурнăçлать тенине те илтме тивет...**

– Темĕн калакан та пур. Заявленисем, резолюцисем çырнипе кăна мар-çке. Çыр та тепĕр çул манса кай тенипе те мар. Культура министерстви, паллă, тăван культура ыйтăвĕсене татса парать. ЧНК та вĕсене хăйсене май пурнăçлать. Ытларах диаспорăпа ĕçлетпĕр. «Чăваш пики», «Кĕмĕл сасă« конкурссем тата ыт. те ирттерни пархатарлă. Чăваш наци кĕрешĕвĕ пирĕн çумра вăй илсе çĕкленчĕ. Йăхташăмăрсем патне çитсе ырă сăмах калани те – вĕсене хисеплени, манманни. Чăваш наци конгресĕ Культура министерствин функцийĕсене çеç пурнăçламасть, конкретлă ыйтусемпе ĕçлет. Республика тулашне тухса çÿреме вăй-хăват кирлĕ. Эпир ăçта кăна пулман-ши? Мускаврa, Питĕрте, Самарта, Тюменьре тата ытти çĕрте тĕрлĕ мероприяти ирттернĕ. Нумаях пулмасть Чĕмпĕр чăвашĕсем И.Я. Яковлев палăкне уçрĕç, Питĕрти чăвашсем пухăнчĕç. Çавăн пек пысăк хуласенче чăвашсем пухăнни, тĕрлĕ мероприяти ирттерни – тĕлĕнмелле паха. Пĕрмаях тухса çÿремесен Конгресс ĕçĕ путланать.

**– Эсĕ общество-политика пурнăçĕнче нумай çул. «Политика – таса мар ĕç» – анлă сарăлнă çак каларăшпа килĕшетĕн-и? Мĕншĕн – таса мар? Политик идеалĕ саншăн кам? Мĕншĕн?**

– «Политика – таса мар ĕç...» Чăннипех те çапла пулĕ. Нухрат çук пулсан эсĕ никам та мар. Çак каларăша, паллах, кашни хăйсене май ăнланать. Миллионерсем хура халăх шухăшне пĕлеççĕ-и? Ăна пулăшма тăрăшаççĕ-и? Политик идеалĕ – Николай Федоровпа Юрий Лужков. Вĕсем ыттисенчен ĕçе тĕплĕ пурнăçлама пĕлнипе уйрăлса тăраççĕ. Яваплăха туяççĕ. Наци пĕрлешĕвĕсене пулăшаççĕ. Раççей Президенчĕ вырăнне В.В. Путина суйлани хăйсене евĕрлĕ. Çĕнĕ сывлăш килчĕ. Чăваш халăхĕшĕн, чăвашлăхшăн çунакан политиксем ытларах пулсассăн аванччĕ. «Тус» предприяти пуçлăхĕ Николай Угаслов Н.И. Полоруссов-Шелепи палăкне лартрĕ, Кăнна Кушкинче И.Я. Яковлев палăкне çĕклесшĕн. Вăлах – Чăваш Республикинче пурăнакан тутар чăвашĕсен пĕрлĕхĕн председателĕ те. Çакăн пек чăвашсене депутата суйламалла та.

**– Культурăна (унăн мĕн пур сферипе) политикăран уйăраймастăн. Эсĕ 1989 çулта республикăн Аслă Советне депутата «Хыпар» (ун чухне «Коммунизм ялавĕ») хаçатра ĕçленĕ чухне суйланнă. 1994–1998 çулсенче иксĕмĕр республика Патшалăх Канашĕн пĕрремĕш суйлавĕн депутачĕ пулнă тапхăрта та «хыпарçă» пулма пăрахман. Паян наци хаçачĕсем – тарăн кризисра. Сăлтавĕ нумай: глобализаци, конкуренци, почта çырăнтару хакне капашсăр ÿстерсе яни, халăхăн «вулакан ăрăвĕ» пурнăçран кайса пыни, вăтам тата çамрăк ăру вулавран писни. «Катастрофа, катастрофа!» – тесе вĕткеленсе çÿриччен чăваш интеллигенцийĕ текен вун-вун пин çынлă йышăн çырăнса пулăшасчĕ «Хыпара», «Çамрăксен хаçатне», «Чăваш хĕрарăмне», «Тăван Атăла», «Тантăша», «Капкăна». Е халăхăн «ăсĕ, чысĕ, совеçĕ» пулмалли çак конгломерат чăваш пичечĕ ахрат çырми хĕрринче тăнине туймасть-и? Паян – пичет, ыран – театр, унтан... Тен, Чăваш наци конгресĕн активисчĕсен тĕслĕх кăтартмалла? Ку енĕпе эпĕ максималист та, радикал та: «Хыпар» хаçата çырăнса илменскер ЧНК пухăвĕнче е Мăн Канаш ларăвĕсенче чăваш культурине кăкăр çапса «хÿтĕлекене» эпĕ шансах каймастăп. Çыравçăсем кăна пирĕн – 500-и, 600-и? Чăваш артисчĕсем, художникĕсем, юрăçисем, педагогĕсем, ăслăлăх çыннисем – миçе? Чи интересли – хăйсем пирки çыртарас килсен «Хыпара» пыраççĕ...**

– Кунта пĕтĕмĕшле лару-тăруран килет пулĕ. Енчен те эпир тăван чĕлхене, культурăна ачаран хисеплеместе пулсан – малашне мĕн пулĕ? «Чăваш чĕлхи Канаша çитиччен çеç кирлĕ» тенине тĕпе хурса пурăнсан мĕн курăпăр? Ачаран хаçатпа туслă çын кайран та туслăхне çухатмĕ. «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсен тиражĕ, ытти регион наци хаçачĕсемпе танлаштарсан, чи пысăкки. Сăлтавсăр айăплама кирлĕ мар. Эпир хăй вăхăтĕнче массăллă информаци хатĕрĕсенче чăвашлăх ыйтăвĕсене çутататтăмăр, шавласа çеç тăнă. Пирĕн авалхи пуянлăхпа савăнмалла. Эпир вара? Журналист кирек хăш темăна çутатнă чухне те чăвашлăх пирки асăнма пултарать. Унччен Атнер Хусанкая националист тесе пăхрĕç. Тепре калатăп: пирĕн хушăмăрта националистсем çук, эпир – патриотсем. Çĕнĕ ăру хаçатран писни компьютеризаци витĕмĕнчен те килет. Кунпа, паллах, çырлахмалла мар. Влаçри çынсем ятарлă программăсем йышăнсан, тен, пичет ĕçне хисеплеме пуçлăпăр.

**– Чăваш наци конгресĕн пухăвĕсенчи намăс пулăмсенчен пĕри – вырăсла калаçакан йăхташăмăрсене алă çупса, кăшкăрашса («Чăвашла калаç! Чăвашла пĕлмесен – ма килтĕн?») сăмах калама чарни. Çав вăхăтрах зала хуласенчен пухăннă делегатсенчен нумайăшĕн ачисем тăван чĕлхепе çырмаççĕ, вуламаççĕ. Пурнăç чăнлăхне хирĕçлеймĕпĕр: хула чăвашĕсен иккĕмĕш ăрăвĕ тăван чĕлхерен писет. Паллах, чăвашла вĕрентмелле. Анчах «чăвашла пĕлменлĕх» комплекса мĕнле пĕтермелле? Çак çынсемпе, тĕрĕссипе, паян никам та ĕçлемест. Чăн та, «Хыпар» ИÇ «ЛИК» журнала чăваш чунĕллĕ вырăсла кăларăм тет, ЧНКпа пĕрле «Чăваш тĕнчи – Чувашский мир» хаçата вырăсла-чăвашла кăларатпăр. Шел те, укçа çукран вăл сайра тухать.**

– Хулари чăваш ачисене, çамрăкĕсене çухатса пыратпăр. Чăваш чĕлхине вырăс чĕлхипе пĕр шая лартсассăн çеç чăвашлăха упраса хăварма май килĕ. «Чăвашла пĕлменлĕх» комплекса мĕнле пĕтермелле? Тÿрех пĕтмест ĕнтĕ. Обществăна хатĕрлемелле. Чăвашра пурăнатăн пулсан – чăвашла калаç. Çине тăрса ĕçлесен çеç паха енсене куратпăр. «Чăваш тĕнчи» хаçата кăлармаллах. Диаспорăра пурăнакансен те ентешсен, йăхташсен ĕç-хĕлĕ, пурнăçĕ пирки пĕлес килет-çке. Çапла, нухрат çукки ура хурать. Шел те, хаçат вăхăтра кун çути кураймасть. Укçа-тенкĕ ăçтан тупмалла? Патшалăх пулăшасса шанатпăр.

**– Санăн юбилей: 50 çул. «Хыпартан» – чи ăшă салам! Халĕччен мĕн палăртни «планпа» килĕшÿллĕн пурнăçланса пырать-и?**

– Планпа килĕшÿллĕн пурнăçланаймасть çав. 1992 çулта йышăннă «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккун та туллин пурнăçа кĕреймерĕ. ЧНК пĕтĕм халăх ĕçне тăвать. Халăха кирлĕ мероприятисене ытлăн-çитлĕн те анлăн ирттерме пуçласчĕ. Паллах, малашне те патшалăх пулăшасса шанатпăр, чăвашлăх чунне çухатман çынсем «тупăнасса» кĕтетпĕр.

*«Хыпар», 30.11.2006.*

## ÇĔНĔ ТĔЛЛЕВСЕМ КИРЛĔ

*Чăваш юнĕллĕ çеç мар, чунĕллĕ йăхташăмăрсем, вĕсем ăçта, тĕнчен хăш хĕрринче тĕпленсен те – хăйсем кам пулни, хăш кăкран тухни пирки асра тытса пурăнаççĕ. Унтан та ытларах, çав тымара – тăванлăх шăнăрне – малалла çирĕплетме тăрăшаççĕ. Вăй çитнĕ таран пĕр чăмăра чăмăртанма талпăнаççĕ. Паянхи кун Раççейре тата чикĕ леш енче унашкал пĕрлĕхсем 72. Вĕсен чăн «хуçи», чи çывăх пулăшуçи вара Чăваш наци конгресĕ.*

Паллах, кашни çулах Аслă пуху пуçтарма çук. Çапах та Мăн Канаш членĕсем (унта республика тулашĕнчи пур регионти чăваш пĕрлешĕвĕсен хастарĕсене кĕртнĕ) хăйсен çулленхи ларăвĕсене пухăнаççĕ. Кăçалхи раштавăн 2-мĕшĕсенче иртрĕ. Чăн та, йăхташăмăрсен хастарлăхĕ куç умĕнчех. Инçе çула хыçа хăварса тĕп хуламăра Тутарстанпа Мари Эл, Чĕмпĕрпе Чулхула, Пушкăртстан чăвашĕсем çеç мар, Мускав, Питĕр, Самар, Беларуç, Эстони, Красноярск, Тюмень, Иркутск тата ытти тăрăхри чăвашсем те килсе çитнĕ. Кубăра та пур иккен пирĕн тăвансем.

Мĕнле савăнăçпа, мĕнле шухăш-кăмăлпа, хуйхă-суйхăпа пурăнаççĕ-ха вĕсем? Чуна канăççăрлантаракан çав ыйтусемпе тухса каласрĕç те. Кăçалхи ларура (вăл Чăваш патшалăх вырăс драма театрĕнче иртрĕ) республика тулашĕнчи тăванăмăрсене ытларах сăмах парас терĕç. Çапах та ЧНК президенчĕ **Г.Н. Архипов** асăннă çулта туса ирттернĕ ĕçсем пирки те каласа кăтартрĕ. Эпир, хаçатçăсем, ЧНК кулленхи ĕç-хĕлне çутатса тăнăран, вĕсем пирки тепĕр хут чарăнса тăмăпăр. Наци конгресĕн вăйĕпе пурнăçа кĕртнĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсене çеç палăртса хăварар. Шупашкар хула администрацийĕпе икĕ енлĕ килĕшу тунă. Мĕн парĕ вăл? Тĕп хулара чăвашлăх ĕçне вăй-халпа тĕревлесшĕн. «Хĕрлĕ парăс» лагерьте тулай чăваш ачисен канăвне йĕркеленĕ. ЧНК çумĕнче чĕрĕлсе вăй илнĕ наци «Кĕрешӳ» спорт вăййине Раççейре те йышăнчĕç. Пысăк çĕнтерӳ! Çакă А. Петров, В. Васильев тренерсем тĕрлĕ регионта ăна çĕклессишĕн вунă çул вăй хунин çимĕçĕ тенĕ пулăттăм.

Г.Н. Архипов президента мĕн шухăшлаттарать-ха хальхи вăхăтра? Чĕмпĕрсен телекуравĕнче чăвашла «Еткер» передача çухални, «Самар ен» хаçат йĕркеллĕ тухса тăрайманни. Вăл çеç-и, пĕтĕм чăвашсен «Чăваш тĕнчи» хаçачĕ та çулталăкра пĕрре çеç сут тĕнче куркалать. Ăсчахсем Шупашкар хулине хăçан никĕслenине тĕрĕс палăртнă пулин те тӳре-шара çакна йышăнма васкамасть-ха. Тата ытти чăрмавпа çивĕч ыйтусене те хускатрĕ ЧНК президенчĕ.

ЧР культура министрĕ **П.С. Краснов** лару ĕçне хутшăнчĕ (сăмах май, вăл çеç мар, ЧР вĕрентӳ министрĕ **Г.П. Чернова**, ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ — культура ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитет председателе **В.П. Мидуков**), сăмах каларĕ. ЧР Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш наци конгресĕн президентне **Г.Н. Архипова** «ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă. Петр Степанович Краснов çакна ĕнентерекен паллăна тата документа ун хуçи патне çитерчĕ. Сумлă çак ята çавăн пекех Шупашкар хула администрацийĕ çумĕнчи «Сарпике» ансамбль аккомпаниаторĕ **И. Угаслова** та тивĕçрĕ. **Петр Краснов** министр ЧР Президенчĕпе Тав çырăвĕпе Чĕмпĕрти, Тутарстанри чăваш наци культура автономийĕсен пуçлăхĕсене **В. Сваева**, **К. Яковлева** чысларĕ. Чăваш наци конгресĕн Тав çырăвне вара **И. Захарова** (Эстони), **Л. Сомова** (Самар), **Н. Угаслов** (Шупашкар), **В. Романова** (Красноярск) тивĕçрĕç.

П. Краснов министр хăйĕн сăмахĕнче тулай чăвашĕсене «тĕксе» те илчĕ. Мĕншĕн? Сăмахран, Чăваш кĕнеке издательстви юлашки çулсенче ача-пăча, илемлĕ литература пичетлессине самай ӳстерчĕ. Çапах та регионсенче вĕсене туянма васкамаççĕ (сăмах май, «Хыпар» хаçата çырăнса илесси пирки те çавнах каламалла. Хăнасем вара «пире чун апачĕ кирлĕ» теççĕ). Министр ЧНК тĕрлĕ формăпа ĕçленине ырланипе пĕрлех ума çĕнĕ тĕллевсем лартмаллине те палăртрĕ.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 5.12.2006, 229№.*

## 15 ÇУЛ: МĔН ТУНĂ ТАТА МĔН КĔТЕТПĔР?

*Иртнĕ шăмат кун Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче чăваш наци конгресĕн Мăн Канаш ларăвĕ иртрĕ. Ăна чăваш халăхĕн 1-мĕш Аслă пухăвĕ пулнăранпа 90 çул, Чăваш наци конгресĕ йĕркеленнĕренпе 15 çул çитнине халалланă.*

Тĕнче тăрăх сапаланнă чăвашсене çак пулăмсем витĕм кӳнех. Пĕр-пĕринпе çыхăнласси çаксенчен пуçланнă. Çавăнпа та Мăн Канашра Конгресс утса тухнă çула çеç мар, иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш хастарĕсем тунă ĕçсене те тишкерсе хакласси, малашлăх пирки пуçа ватасси пĕрремĕш вырăнта пулчĕ.

Сумлă форума ЧР Президенчĕ **Н.В. Федоров**, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ **М.А. Михайловский**, ЧР Министрсен Кабинечен Председателĕн çумĕ — культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министрĕ **Н.И. Володина**, ЧР вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕ **Г.П. Чернова**, вун-вун регионпа çĕр-шывран килнĕ чăваш хастарĕсем хутшăнчĕç.

Йăлана кĕнĕ йĕркене пăсмасар ЧНК Ваттисен Канашĕн членĕ **Н.Е. Наумов** мăчавăр чăваш тĕнчине упрама Çӳлти Турăран сывлăх, ырлăх ыйтнă, чăваш наци гимнĕ — «Алран кайми аки-сухи» — янăранă, юлашки çулсенче чăвашлăх ĕçĕнче палăрнă, анчах пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнă ентешсене асăнса пĕр самант ура çинче тăнă хыççăн лару кун йĕркинче палăртнă ыйтусене сӳтсе явма пуçларĕ.

ЧНК пĕрремĕш тата хисеплĕ президенчĕ **А.П. Хусанкай** 15 çул каялла Чăваш наци конгресĕ чăмăртаннă саманта аса илчĕ, Чăваш Ен Аслă Канашĕ тунă йышăнупа ЧНК пĕрремĕш Аслă пухăвне 1000 яхăн çын пуçтарăннине, самана пăтрашуллă пулнине пăхмасăр пурне те пĕр шухăш — чăмăртану — пĕтĕçтерсе тăнине палăртрĕ.

Атнер Петрович çавăн пекех 90 çул каяллахи Аслă Пуху пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕ. 1917 çулхи çĕртме уйăхĕнче Чĕмпĕрте иртнĕ вăл. Унта хутшăннисенчен ытларахăшĕ И.Я. Яковлевăн чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Вĕсене пĕр тĕллев — халăхшăн ĕçлесси — пĕтĕçтернĕ. Çапла тĕрлĕ сийри чăваша — интеллигент-и вăл е çĕр ĕçченĕ-и, тĕн çынни-и е çарта вăй хурать-и — кирек хăшĕшĕн те халăх интересĕ тĕп вырăнта пулса тăрать. Пĕрлĕх, чăмăртану, аталану — çак тĕллевсем хавхалантарнă чăваша. Паянхи кун та çаплах. А.П. Хусанкай шухăшĕпе — хальхи вăхăтăн хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Вĕсенчен пĕри — глобализм. Чăваш ăна хирĕç тăма пултарĕ-и? Çемьене илес пулсан — вăл та хăйĕн хăватне çухатса пырать. Массăллă культура пусмăрĕ ӳсет. Тĕнче касма тухса кайнă чăваша тата йывăртарах. Наци пĕрлĕхне, наци туйăмне сыхласа хăварасси унашкал чухне çăмăл мар. Мĕн тумалла? Çак ыйтăвăн хуравне А.П. Хусанкай çапларах курать: пирĕн аслă, пысăк пĕлӳллĕ пулмалла. Наци шкулĕ кирлĕ — пĕрремĕш класран пуçласа аслă пĕлӳ иличченех тăван чĕлхепе вĕрентекенни. «Унсăрăн чăвашлăх пирки калаçмалли те çук. Тăван чĕлхе çемье шайĕнчен çӳле çĕкленеймĕ», — терĕ Атнер Петрович.

А.П. Хусанкай çавăн пекех тĕнчепе, хамăрăн хутлăхпа пĕр шайра пымаллине те аса илтерчĕ. Хальхи вăхăтра Уралпа Атăл тăрăхĕнчи халăхсен хутшăнăвĕсене вăйлатма кирлине палăртрĕ. 90 çул каялла та çак ыйтусем çивĕч пулнă. Çавна май Хусанта 1917 çулта асăннă тăрăхри вак халăхсен Аслă пухăвĕ иртнĕ. Ăна йĕркелекенсенчен пĕри — «Хыпар» хаçат никĕслевçи Н.В. Никольский.

ЧНК президенчĕ **Г.Н. Архипов** хăйĕн сăмахĕнче Конгресс юлашки вăхăтра тунă ĕçсем пирки чарăнса тăчĕ. Мĕн шухăшлаттарать, савăнтарать ăна? Мĕн тума мехел çитернĕ тата мĕн пирки пуçа ватмалла? «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккун йышăнни çеç мĕне тăрать, — терĕ Геннадий Николаевич. — Пĕр вăхăтра шкулсенче вĕрентесси шкул директорĕсен ирĕкĕнчен килетчĕ. Эрнере пĕр е виçĕ сехет вĕрентессине вĕсем татса паратчĕç. Иртнĕ çул ку енĕпе татăклăн ĕçлеме тиврĕ, тĕрĕслевсем ирттертĕмĕр, комисси турăмăр, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен конференцине ирттертĕмĕр...»

Г.Н. Архипов Конгресс пуçарăвĕпе пурнăçа кĕнĕ ытти ĕçе те палăртса хăварчĕ: Шупашкарта çулленех «Кĕмĕл сасă» эстрада фестивалĕ, «Чăваш пики» конкурс иртеççĕ. Тĕрлĕ регионти йăхташăмăрсен ачисем çуллахи вăхăтра виççĕмĕш хут Чăваш Енре сывлăхне çирĕплетеççĕ. Кăçал пуçласа «Чăваш тумĕ» фестиваль йĕркелеме пултарнă. Пур ĕçсем, пур. Çав вăхăтрах ЧНК хăй те патшалăхран пулăшу кĕтет. Сăмахран, чылай çĕрте ЧНК йышши организацисене тытса тăрассине патшалăх хăй хӳттине илнĕ: Пушкăртстанпа Тутарстан республикисенче бюджетран 6 –7 миллион тенке яхăн уйăраççĕ. Пирĕн вара 20 яхăн общество пĕрлешĕвĕ валли пурĕ те 700 пин тенкĕ çеç уйăрнă. Чăваш ĕçĕн хастарĕсен тата акă мĕншĕн чĕри ыратать: Пушкăртстанра пушкăртсем пирĕн пек 67 процент мар, 19 процент çеç, анчах влаçра вĕсем 80 процент ытла, телекуравпа радио талăкĕпех — пушкăртла. Хаçат-журнал пирки те çавнах каламалла. Ытти самант пирки те чунне уçса калаçрĕ ЧНК президенчĕ.

Г.Н. Архипов чăвашлăх юхăмĕн хастарĕсене ЧНК Тав хучĕпе чысларĕ. Çак хисепе «Тус» фирмăн ертӳçи **Н.Ф. Угаслов** (вăл пулăшнипе Тутар-

станра Н.И. Полоруссов-Шелепипе П.В. Дементьев палӑкӗсене туса лартнӑ), музей ӗҫченӗ **А.В. Степанова**, Чӑваш наци библиотекин директорӗ **С.М. Старикова**, тӗрӗ ӑсти **З.И. Воронова**, ыттисем тивӗҫрӗҫ.

ЧНК ӗҫтӑвкомӗн председателӗн **К.П. Портновӑн** «Несӗлсен ӑс-тӑнӗ, йӑли-йӗрки – чӑваш халӑхӗн малашлӑхӗн ҫулӗ» доклачӗ Г.Н. Волков академик ҫуралнӑранпа 80 ҫитнӗ май ун пултарулӑхне, ӗҫне, пурнӑҫне тишкерсе хак панипе ҫыхӑннӑ.

Чӑваш наци конгресне йӗркелес ӗҫе хастар хутшӑннӑ ҫынсенчен пӗрин **В.П Станьялӑн** шухӑшӗпе – глобализма хирӗҫ тӑма пире культура енӗпе хамӑра упраса хӑварма пултарни пулӑшать. Кӗнекесем ытларах кӑлармалла, аваллӑха тӗпчемелле. Виталий Петрович ку енӗпе тавра пӗлӳҫӗсем пурнӑҫлакан ӗҫе ырларӗ.

«Хыпар» Издательство ҫурчӗн генеральнӑй директорӗ-тӗп редакторӗ, ЧНК вице-президенчӗ **А.П. Леонтьев** информаци анлӑшӗнче МИХсен лару-тӑрӑвӗ ҫӑмӑл маррине палӑртрӗ. Тиражсем чакнин сӑлтавӗсене уҫса пачӗ, республикӑри, диаспорӑри чӑваш кӑларӑмӗсен паянхи ҫивӗч ыйтӑвӗсене хускатрӗ.

Сӑмах калакансем татах та пулчӗҫ: **А.В. Шабашов** (Одесса), **Н.Д. Максимов** (Свердловск), **А.Р. Краснов** (Питӗр), **Ю.П. Алексеев** (Красноярск) тата ыттисем. Вӗсем хӑйсен ӗҫӗпе паллаштарчӗҫ.

Хӑнасене итленӗ хыҫҫӑн трибуна умне ЧР Президенчӗ **Н.В. Федоров** тухрӗ.

– Паян сирӗн пата киличчен Куславкка районӗнче пултӑм. Унта чӑвашсем пурӑнакан икӗ ялта ҫӗнӗ ҫул уҫрӑмӑр, – терӗ Николай Васильевич. – Кӑҫал кӑна хыснаран уйӑрнӑ 300 миллион тенкӗ укҫапа асӑннӑ районти 13 яла асфальт сарнӑ ҫулпа ҫыхӑнтартӑмӑр.

Темиҫе ҫул каялла 454 ялта йӗркеллӗ ҫул пулман. Ҫак ыйтӑва ҫывӑх вӑхӑтрах татса парассине пӗлтерчӗ Н.В. Федоров.

И.Я. Яковлев ҫуралнӑранпа – 160 ҫул, «Нарспи» поэма кун ҫути курнӑранпа кӗҫех пӗр ӗмӗр ҫитессине палӑртрӗ Николай Васильевич. Ҫавна май ку енӗпе республика тума палӑртнӑ ӗҫсене те аса илчӗ.

ЧНК вице-президенчӗ **В.А. Абрамов** Мӑн Кӑнашӑн резолюцийӗсемпе («ЧНК ҫурчӗ пирки», «ЧР гимнӗ пирки», «МИХсем пирки», «Чӑваш театрӗсен шӑпи пирки», «2008 ҫулхи уявсем пирки» т. ыт. те) паллаштарчӗ. Вӗсене, чӑвашлах юхӑмне малалла аталантарас енӗпе ҫыхӑннӑскерсене, пӗр кӑмӑллӑ пулса йышӑнчӗҫ.

Уяв концертне Чӑваш халӑх артисчӗ **Валерий Иванов**, чӑваш эстрадинче палӑрнӑ юрӑҫсем хутшӑнчӗҫ.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 7.11.2007, 213№.*

## «ХӖРЛӖ ПАРӐС» АЧИСЕМ – ЧӐННИПЕХ ПИОНЕРСЕМ

*Чӑваш наци конгресӗн пуҫарӑвӗпе «Хӗрлӗ парӑсра» канакан ачасем Чӑваш ҫӗрӗ ҫинче ирттернӗ кашни самант усӑллӑ пултӑр тесе тӑрӑшаҫҫӗ. Нумаях пулмасть вӗсем Пичет ҫуртӗнче пулчӗҫ.*

Пирӗн республикӑра ача-пӑча тата ҫамрӑксен валли тӑван чӗлхепе «Ҫамрӑксен хаҫачӗ», «Тантӑш» хаҫат, «Самант», «Тетте» журналсем пичетленсе тухаҫҫӗ. Ачасенчен чылайӑшӗ кӑларӑмсем тӑван шкула килсе тӑнине каларӗҫ, вӗсене юратсах вулаҫҫӗ иккен. Кунсӑр пуҫне нумайӑшӗ сӑвӑ-калав ҫырать. Ҫавӑнпа та журналистсемпе тӗл пулни вӗсен асӗнче юлатех.

«Тантӑш» хаҫатӑн тӗп редакторӗ **Г.Е. Платонова** диаспорӑри чӑваш ачисене хаҫат-журнал ӗҫӗпе паллаштарчӗ. «Эпир нумай регионпа ҫыхӑну тытатпӑр, пирӗн пата Пензӑран, Тутарстанран тата ытти вырӑнтан та ҫырусем килеҫҫӗ. Вӗсене чи малтан пичетлеме тӑрӑшатпӑр. Хаҫатри чылай материала вӗренекенсен корреспонденцийӗсенчен хатӗрлетпӗр. Чи пултаруллисене «Орленок» лагерьте канма путевка паратӑр», – терӗ Галина Егоровна.

Кашни ачан мӑйне Раҫҫей Федерацийӗн, Чӑваш Республикин ялавне тата Шупашкар хулин гербне сӑнланӑ галстук илемлетет. Кӑҫал лагерьте «Хурҫӑ шанчӑк» ҫӗнӗ организаци йӗркеленнӗ. Унта кӗрекенсем: «Чӑваш чӗлхине пӗтме памастпӑр, ӑна аталантаратпӑр»,– тесе тупа тунӑ. Ача организаци членӗ пулнине шӑпах ҫак галстук ҫирӗплетет. Чӑвашла пӗлменинсем чӗлхене тӑрӑшсах вӗренеҫҫӗ. Ачасен амӑшӗсем те тӑван чӗлхене аталантарма шантарнине каларӗ «Этker» программа ертӳҫи **А.П. Игнатьева**.

Сӑмах май, галстукпа Чӑваш наци конгресӗ тивӗҫтернӗ. «Эпир те пионер пулнӑ. Пионер камне пӗлетӗр-и?» – кӑсӑкланчӗ чӑваш халӑх хаҫачӗн «Хыпарӑн» тӗп редакторӗ, Чӑваш наци конгресӗн вице-президенчӗ **А.П. Леонтьев**. Шӑпӑрлансем пӗр ҫӑвартан тенӗ пекех: «Пӗлетпӗр, пӗрремӗш пыракан»,–тесе хуравларӗҫ.

«Пӗрремӗшӗн» ялан тӗслӗх пулмалла, ыра ӗҫсем тума ыттисене хӑйӗн хыҫҫӑн ертсе каймалла. «Хӗрлӗ парӑсра» канакансен те кунта мӗн курнине, вӗреннине тӑван тӑрӑхӗнче юлташӗсене, тӑванӗсене каласа памалла, вӗрентмелле, ҫак ырӑ юхӑма тӑсмалла.

«Коммунизм тапхӑрӗнче тӗрлӗ наци мар, пурин те пӗр совет халӑхӗ пулмалла текен идеологи аталаннӑ. Ҫак халӑхӑн вырӑсла калаҫмалла тенӗ. Сирӗнтен хӑшӗ-пӗри чӑвашла пӗлмест. Эсир ҫав вӑхӑт «ахрӑмӗ». Диаспорӑра ҫеҫ мар, республикӑри нумай районта та ҫакӑ сисӗнет. Пирӗн хамӑрӑн культурӑна сыхласа хӑвармалла. «Хыпар» издательство ҫурчӗ ҫак ыйтупа тӗллевлӗн ӗҫлет. Эсир – ҫӗнӗ самана ҫыннисем. Ачаран пархатарлӑх патне туртӑнатӑр. Тӑван тӑрӑха таврӑнсан Чӑваш Енре курни-илтнине ыттисене каласа кӑтартӑр. Тӑван чӗлхепе тухакан хаҫат-журнала ҫырӑнӑр», – терӗ Алексей Петрович.

Чаваш кӗнеке издательствинче ача-пӑча валли икӗ чӗлхепе кӗнеке чылай пичетленсе тухать. Вӗсемпе **Г.А. Антонова** паллаштарчӗ. «Хӗрлӗ парӑсран» килнӗ хӑнасене «Хыпар» тата «Танташ» редакцийӗсем парнесем пачӗҫ. Вӗсен йышӗнче А. Грин ҫырнӑ, А. Леонтьев чӑвашла куҫарнӑ «Хӗрлӗ парӑс» кӗнеке те. Ачасем малашне те тӑван чӗлхепе тухакан хаҫат-журналпа ҫыхӑну тытма шантарчӗҫ.

Татьяна Михайлова.
*«Хыпар», 5.07.2008, №134*

## ЕСТЬ ЯЗЫК – БУДЕТ НАЦИЯ

**Предложения**
**Президиума Чувашского национального конгресса по решению назревших проблем настоящего и будущего чувашской нации, принятые 24 января 2008 года после обсуждения статьи Н.И. Егорова**
**«Чӗлхе пур чухне – халӑх пур»** («Хыпар», 2007, №№ 20, 25, 26)

**1. Предложения по общим вопросам:**

1.1. Создать (усилить) отделы по работе в области чувашского языка, литературы, культуры соответственно в министерствах образования и культуры.

1.2. Построить национальную деревню в [микрорайоне] «Новом городе» (каждая национальность, проживающая в Чувашии, построит свой комплекс, в том числе и ЧНК).

1.3. Создать государственную комиссию по науке при правительстве Чувашской Республики, восстановить академию наук ЧР.

**2. Предложения Министерству культуры ЧР:**

2.1. Возобновить праздник «Акатуй» в республиканском масштабе со сводным хором в центрӗ города во время празднования Дня республики 24 июня, как праздника всех чувашей, а фестиваль «Родники Поволжья» проводить или 23, или 25 июня.

2.2. Открыть отдельное финансирование газеты «Чӑваш тӗнчи – Чувашский мир».

2.3. Увеличить долю национальных передач на телевидении и радио, увеличить штаты. Передачи должны быть поставлены в удобное для просмотра и прослушивания время. В перспективе создать круглосуточное радио и телевидение на национальном языке, взяв за идеал татарское телевидение и радио.

2.4. Возродить в сельской местности сетевое радиовещание.

2.5. В сельских клубах и ДК возобновить показ кинофильмов.

2.6. Восстановить работу студии «Чувашкино», возобновить показ по телевидению чувашских фильмов и спектаклей.

2.7. В Чувашском государственном институте гуманитарных наук увеличить штаты этнографов и археологов, где в настоящее время работают только два человека.

2.8. Создать чувашский этнографический музей под открытым небом, но не развлекательный центр. Провести общественное обсуждение проекта строительства этого музея.

2.9. Вернуть народу Музей пива, проданный в частные руки, сохранив ему статус музея.

2.10 Открыть музей великого просветителя чувашского народа И.Я. Яковлева.

2.11. Возродить премию имени классика чувашской литературы К.В. Иванова.

2.12. Увеличить государственное финансирование издания книг чувашского национального содержания.

2.13. Выпустить карту Чувашской Республики на чувашском языке.

**3. Предложения Министерству образования ЧР:**

3.1. Ежегодно проводить конкурсы учителей предметов национально-регионального компонента, премировав их в республиканском масштабе.

3.2. Изыскать возможность увеличить на 15 % заработную плату учителям чувашской словесности в городских школах.

3.3. В каждой школе республики должны быть газеты и журналы на национальном языке, для чего выделить средства на их подписку за счет министерства.

3.4. Ввести форму контроля (экзамен, зачет, собеседование) по страноведению (чувашский язык, литература, культура, история) во всех русскоязычных школах, техникумах, ВУЗах.

3.5. Провести проверку состояния преподавания предметов национально-регионального цикла в коммерческих ВУЗах, в средних специальных учебных заведениях.

3.6. С учетом предложений, изложенных в статье профессора Н.И. Егорова «Чĕлхе пур чухне – халăх пур» (Есть язык – будет нация) в газете «Хыпар» (№№ 20, 25, 26), сохранения и развития национального языка в Чувашской Республике, разработать комплексную программу на перспективу для школ по изучению языка, истории, культуры чувашского народа.

**4. Предложения Министерству экономики ЧР:**

4.1. На всех остановках общественного транспорта по всей республике обновить указатели названий деревень, параллельно используя их истинно чувашские названия.

4.2. На всех видах транспорта использовать главный государственный язык – чувашский (объявления, указатели, реклама).

4.3. Более 200 тыс. трудоспособного населения, главным образом молодые люди, не могут реализовать себя в Чувашской Республике. Необходимо создать базу для предоставления работы специалистам в своей республике.

4.4. Сельскохозяйственное производство развивается слабо, трудоспособное сельское население не может найти себе работу. Значительная часть пахотных угодий заросла бурьяном. Нужна государственная экономическая программа развития села, предпринимательства, поддержка со стороны городов и промышленных предприятий в развитии сельскохозяйственного производства, в занятости сельского населения.

**5. Предложения администрации г.Чебоксары:**

5.1. Восстановить статус кафе «Театральное», где раньше собирались любители театра, интеллигенция (сейчас там другое заведение с невообразимыми ценами).

5.2. Ускорить работу по установлению истинной даты основания г. Чебоксары (XIII век).

5.3. Восстановить истинное, старинное название столицы Чувашии – Шупашкар, избежав двухвариантного использования названия.

5.4. На здании речного порта добавить слово «Шупашкар» (на русском и английском есть).

5.5. Сохранить национальный статус гимназии им. Г.С. Лебедева в г. Чебоксары. Открыть во всех крупных городах гимназии и лицеи подобного статуса.

5.6. В названиях улиц, площадей использовать имена деятелей чувашской культуры, науки, а также восстановить истинную чувашскую топонимику.

5.7. Создать при администрации г. Чебоксары (совместно с ЧНК) комиссию по переводу на чувашский язык с рекомендательно-разрешительным статусом для придания единообразия фирменных вывесок, а также рекламных плакатов государственных и частных организаций, предприятий.

Придать национальный колорит в оформлении наименований местных предприятий и организаций, этикеток, товарных знаков местного производства. По внешним рекламным плакатам города и другой печатной продукции мы находимся не в Чувашской Республике, не в столице Чувашии, а в какой-либо российской области или даже в зарубежье (гг. Чебоксары, Новочебоксарск и другие города).

*«Чăваш тĕнчи = Чувашский мир»», 2008, №3.*

# 2009, пуш, 20: VII Аслă пуху




Геннадий Архипов Николай Федорова «Чувашский национальный конгресс» кĕнеке парнелет.

## «Çавра сĕтел»
## ЧĔЛХЕСĔР ХАЛĂХ – ЧĔРЕСĔР ХАЛĂХ

*Çак кунсенче «Хыпар» хаçатра (2009 пуш, 11) «Тĕнче хутлăхĕнчен çухалас марччĕ» статья пичетленчĕ. ЮНЕСКО çĕнетсе кăларнă «Тĕнчере çухалас хăрушлăхра тăракан чĕлхесен Атласĕн» пĕтĕмлетĕвĕпе усă курса çырнă ăна. Унта илсе кăтартнă тĕслĕхсем кирек хăш халăха та пăшăрхантармалла, тĕнчере кашни эрнере пĕрер чĕлхе çухалать, чĕлхепе пĕрле унпа калаçнă халăх та, унăн культури те пĕтет .*

ЮНЕСКО сайтĕнчи асăннă Атласра пирĕн çĕр-шыври 136 чĕлхе хăрушлăхрине палăртнă. Пĕтсе пыракан чĕлхесен йышне патшалăх шайĕнче шутланакан пушкăрт, чăваш, коми, якут, калмăк, удмурт чĕлхисене тата ытти чĕлхене кĕртнĕ. Çакă, паллах, уяр кун аçа çапнă пекех. Чĕлхемĕр шăпи «Хыпар» ĕçченĕсене те канăçсăрлантарать. Çавна май редакци «çавра сĕтел» ирттерчĕ. Унта республикăри сумлă ăсчахсем хутшăнчĕç: филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Н.И. Егоров тюрколог, истори ăслăлăхĕсен докторĕ В.П. Иванов этнолог, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕсем – ЧНК хисеплĕ президенчĕ А.П. Хусанкай, ЧНК Президиумĕн членĕ В.П. Станьял. Калаçăва çавăн пекех тĕп хулари чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен пĕрлĕхĕн ертÿçи, 12-мĕш шкул вĕрентекенĕ А.П. ИГНАТЬЕВА хутшăнчĕ. «Çавра сĕтеле» «Хыпар» Издательство çурчĕн генеральнăй директорĕ-тĕп редакторĕ, ЧНК вице-президенчĕ **А.П. Леонтьев** ертсе пычĕ. Алексей Петрович хăнасене панă пĕрремĕш ыйту:

**– ЮНЕСКОн Атласĕнче чĕлхесене ултă йыша пайланă: «хăрушлăхра», «лару-тăру канăçсăрлантарать», «чĕлхен пĕтес хăрушлăхĕ пур», «чĕлхе çивĕч лару-тăрура», «чĕлхе питĕ йывăр хăрушлăхра», «чĕлхе пĕтнĕ». Çак пĕтĕмлетĕве мĕнле хаклатăр? Сирĕн шухăшăрпа – эпир хăш йыша кĕретпĕр?**

**Атнер ХУСАНКАЙ:** Тĕрлĕ сăлтава шута илсен виççĕмĕш ушкăнра теме май килет. ЮНЕСКО ĕçне мĕнле хакламалла? Хальлĕхе электрон верси кăна тухнă. Кĕнеке те кăларĕç-ха. Унта кам тата епле тĕпчениние ăнлантарса парĕç. Çăмахран, пирĕн патра ун пек тĕпчев пулнине пĕлместĕп.

**Виталий ИВАНОВ:** Кам тĕпченĕ? Эпĕ те илтмен. Мĕнле пулăмсене пăхса тухса хакланă? Çирĕплетме пултараймастăп. Çапах та, манăн шухăшăмпа, чĕлхен пĕтес хăрушлăхĕ пур. Юлашки çырав тăрăх – Раççейре 1637 пин чăваш пурăнать. Çав шутран 384 пинĕ (23,5%) хăйсем чăвашла пĕлнине кăтартман. Апла пулсан, 1253 пин çын кăна чăваш чĕлхипе калаçать. Çав вăхăтрах, 2002 çулхи Çырав тăрăх, çĕршывра 1325 пин çын чăвашла калаçать. Эппин, 72 пин çын – тутарсем, çармăссем, вырăссем, пушкăртсем – чăвашла пĕлетпĕр теççĕ. Хулара пурăнакан чăвашсем пăтрашăнса, «вырăсланса» кайнипе çес чăваш пĕтсе пырать теме çук. Çăмахран, Волгоград облаçĕнче хулара тĕпленнĕ йăхташсем 38% кăна, анчах унта чăваш йышĕ 22% чакса кайнă. Томск облаçĕнчи ентешсенчен 33% хулара пурăнать, кунта та кăтарту 24,5% чухлĕ анса ларнă.

Вăл е ку регионти чăвашсем тăван çĕрĕ-шывĕпе çыхăну тытаççĕ-и? Çапла çирĕплетнĕ пулăттăм: Тутарстанпа Пушкăртстансăр, Самарпа Чĕмпĕр хутлăхĕсемсĕр пуçне тĕрлĕ регионтан 15–20 хастар чăваш çес ăшталанса çÿрет. Вĕсемех чĕлхешĕн, культурăшăн, йăла-йĕркешĕн çунаççĕ, статьясем çыраççĕ, чăваш шкулĕсем уçтараççĕ, ыттисем – «çывăрса» пурăнаççĕ. Хастарсем тăрăх çав регионта чăваш чĕлхи пĕтмест-ха тетпĕр.

**Николай ЕГОРОВ:** Чăваш ялне çитсе курар-ха. Çăмахран, нумаях пулмасть Çĕрпÿ районĕнчи Патăрьелĕнче пулнăччĕ. Ниçта та чăвашла çырнине тĕл пулмарăм, шкулта та, лавккара та, ял тăрăхĕнче те, клубпа библиотекăра та. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ те вырăсла калаçать.

Чăваш чĕлхине упрас, аталантарас тетпĕр пулсан чи малтанах ăна ĕçлеттермелле. Камран килет çакă? Çÿлтисенчен-и, аялтисенчен-и? Аялтан тесен – халăх хăй риснĕ чĕлхерен, кирлĕ мар ăна вăл. Хăçантанпа чăваш ĕçне салатса пурăнатпăр, çав вăхăтрах хамăр пата специалистсем ютран илсе килетпĕр. Вĕсем вырăсла калаçаççĕ.

ЮНЕСКОн пĕтĕмлетĕвне асăрхаттару пек йышăнмалла, чĕлхе çивĕч лару-тăрура. Чăваш чĕлхине ЮНЕСКО списокне – тĕнче культурин пуянлăхĕн йышне – кĕртмелле. Çакна ЧНКн çитес Аслă пухăвĕнче йышăнса хăварсан питĕ вырăнлă пулмалла. Ун пек урăх чĕлхе çук. 2500 çул каяллах пулса кайнă вăл. Ăсчахсем çав вăхăта чăваш чĕлхи витĕр çеç тĕпчеме пултараççĕ.

Ман шутпа, лару-тăру йывăр. Вăл питĕ хăвăрт аталанса пырать. Çаврăнать-çаврăнать те чĕлхе пĕтсе ларать...

**Анисия ИГНАТЬЕВА:** Чĕлхе пĕтмест, анчах хăрушлăх пур. Енчен те унашкал пĕтĕмлетÿсем пулмасан паянччен те «çывăраттăмăр» пулĕ. Халăхăн куçне уçмалла, «вăранма» вăхăт çитнĕ. Хальхи шкул ачисем çапла ыйту лартаççĕ: «Чăвашла вĕренни пире мĕн парать?» Пуçламăш классенче вĕсем хаваспах чăвашла вулаççĕ, калаççĕ. 9-мĕш класс тĕлнелле шухăшлама пуçлаççĕ, чĕлхе кирлĕ мар теме пăхаççĕ. Хулари 10–11-мĕш классенче чăваш литературине вырăсла вĕрентеççĕ.

Шкул ачисем тăван хулара чăвашла çырнине кураççĕ-и? Вырăсла, акăлчанла пур, чăвашла – çук. Лавккасенче хуть «молоко» вырăнне «Сĕт» тесе çырасчĕ. Ачасем валли пĕр ырă тĕслĕх çук. Юрать аслă вĕренÿ заведенийĕсенче 2–3-мĕш курссенче чăваш чĕлхи вĕрентеççĕ.

**Виталий СТАНЬЯЛ:** Эпĕ – опмитист. Чăваш чĕлхи пĕтмест. ЮНЕСКО Атласĕпе килĕшетĕп, унти тĕпчевçĕсем нумай чĕлхене танлаштарнă, тишкернĕ. Чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи пулсан та пĕтес хăрушлăхра тенĕ. Чан çапнă. Ăна йышăнмаллах. Тăван чĕлхешĕн тăракан çынна çаплах националист тетпĕр-ха. Вăл пирĕншĕн чи хăрушă япала вырăнĕнче. Вырăнне лартмалла: кам националист, кам тăван халăхшăн кĕрешекен? Пирĕн çав пăтранчăк халĕ те пырать. Уйрăмах тÿре-шара хушшинче.

Чĕлхемĕр пуян. Унăн этимологийĕ пире тĕнчене кăларать. 200 чĕлхе пĕлнĕ Н. Марр академик чăваш чĕлхин тымарĕ тарăн пулнине каланă. Ăнлантару словарьне кăларни, ăна халăх хушшине çитерни ăнкарулăха хăпартать. В. Николаев кăларнă кĕнекесене студентсем туянаççĕ, вĕсем аваллăхпа кăсăкланаççĕ. Ялсенче йăла-йĕрке тасарахххи, çирĕпреххи куç умĕнчех. Патăрьел районĕнчи Чементе, Çĕньялта пулнăччĕ. Халăх çÿрекен вырăнсем тирпейлĕ, çăрса вараланине тĕл пулмарăм. Çакăнта ашшĕ-амăшĕн витĕмĕ, тĕслĕхĕ те пур пулĕ тетĕп.

**– 1917 çулхи революцисем (нарăсри тата юпа уйăхĕнчи) хыççăн «вак» халăхсен чĕлхисем вăйлăн аталаннă икĕ тапхăра палăртма пулать-тĕр: наци интеллигенцине (çав шутра чăвашсенне) аркатнă репрессин чи çÿллĕ пусăмĕчченхи (1937–1939 çç.) 10–15 çул – чĕлхесене тымарлантарнă (коренизациленĕ) вăхăт; çĕнелÿ çулĕсем («Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккун йышăнни; ЧНК йĕркелени; хуласенчи шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине, «Тăван ен культури» предмета вĕрентни). Паян вара глобализаци килсе çапрĕ, халăхăмăрăн пысăк пайĕ вырăсла çырма-вулама, тен, чăвашлинчен те аванрах пĕлет. Чăваш халăхĕн 52% ытла (юлашки çырав пĕтĕмлетĕвĕ) хуласенче пурăнать. Чăваш чĕлхи малалла та пурăнтăр тесен пирĕн хальхи вăхăтра чи малтанах мĕн тумалла?**

**Атнер ХУСАНКАЙ:** Йывăрлăха глобализаци çине йăвантаратпăр-ха. Иртнĕ ĕмĕрте те (революци хыççăн) пулнă вăл. Хальхи вăхăтра пирĕн иртнĕ ĕмĕрĕн 20–30-мĕш çулĕсенче чĕлхе политикине тытса пынă çул-йĕрпе усă курмалла. Чăваш чĕлхипе ĕçре, патшалăх тытăмĕнче усă курнă. Йышăну тунă та – пурнăçланă. Кашни çул тĕрĕсленĕ. Политика яланах çÿлтен, патшалăх тытса пынипе вăя кĕрет..

20–30-мĕш çулсем – хăйсене евĕрлĕ, демократи хуçаланнă тапхăр. Нумай шухăшлăх, тĕрлĕ ушкăнсем пулнă. Ман шутпа, халĕ те çав майсем пур: чĕлхесем çинчен калакан саккун, чĕлхене аталантармалли программа. Вĕсене пурнăçа кĕртмелле кăна.

**Виталий ИВАНОВ:** Усламçăсене çĕр сутнă чухне килĕшӳсенче, условисенче чăваш чĕлхипе усă курасси пирки ятарлă пункт кĕртсе хăвармалла. Чĕлхе ыйтăвĕ – идеологи ыйтăвĕ. Яланах çапла пулнă. Н. Федоров Президент пирĕн шухăша ăнланать. Чылай çивĕч ыйтăва хамăра çĕклеттересшĕн, пире хастартарах тăвасшăн.

**Николай ЕГОРОВ:** Чиновниксене чăвашла калаçтарас тесе пăх-ха, вăй пур тарăн çакна хирĕç тăраççĕ вĕсем. Документсене тăван чĕлхепе çырма вĕренеймеççĕ, çавна май хăйсен пуканне хӳтĕлеме тытăнаççĕ. Шкул директорĕ, ял тăрăх пуçлăхĕ, район пуçлăхĕ... пурте хирĕç. Пĕртен пĕр çăлăнăç – Чĕлхесем çинчен калакан саккун. Ăна ĕçлеттерес пулать. Çапла тума хевте кирлĕ. Хушма пултараканĕ Президент.

**Анисия ИГНАТЬЕВА:** Пĕр «çавра сĕтелте» Н. Федоров Президентпа юнашар ларнăччĕ. Эпĕ чăвашла-вырăсла калаçрăм. Вăл вара манпа чăвашла ытларах та калаçрĕ. Ачасене 9-мĕш класс таран чăвашла вĕрентетпĕр, вĕсене малашне те тăван чĕлхепе усă курма майсем туса памалла. 10–11-мĕшĕсенче чăваш литературине чăвашлах вĕрентме пулать-çке. Халĕ вара асăннă уроксенче чăваш литературине вырăсла вĕрентеççĕ е вырăс литературипе пĕрлĕхлĕ экзамена хатĕрленеççĕ. Çакă вĕрентекене çеç мар, ачасен ашшĕ-амăшне те, администрацие те тивĕçтерет.

**Виталий СТАНЬЯЛ:** Чĕлхе политикине темиçе енпе тытса пыма пулать. Чи малтанах – шкулсем пирки. Диаспорăпа ĕçлеместпĕр. Талантлă ачасем валли ятарлă чăваш шкулĕсем çук. Чылай регионта чăвашла вĕрентме пăрахман шкулсем пур. Иккĕмĕшĕнчен, телекуравра, радиора, хаçат-журналта чĕлхе пирки калаçмалли-тавлашмалли «тĕпел» кирлĕ.

**–Çитес çул – Раççейри халăх Çыравĕ. Унăн кăтартăвĕсем пире ытлашши ан кулянтарччăр тесен паян мĕн тумалла?**

**Виталий ИВАНОВ:** Раççейри тĕрĕк халăхĕсен иртнĕ Çырав хыççăнхи кăтартăвĕсем çакăн пек: пушкăртсем 124% ӳснĕ, карачайсем – 125,4%, тутарсем – 106%, тывасем – 118%, якутсем – 116,7%, хакассем – 96,3%. Çĕр-шывра тĕрĕк чĕлхипе калаçакан 20 халăх хушшинче чи аяла анса ларнисем эпир, чăвашсем, – 92%. Икĕ Çырав хушшинче çулталăкне 10-шар пин чăваш чакса пынă. Çакна шута илсе пропаганда, ăнлантару ĕçне вăйлатмалла.

**Николай ЕГОРОВ:** Халăх йышĕ чакса кайни пире пĕтетпĕр тесе чан çапма, çине тăрса ĕçлеме хистемелле. Тутарстан, Пушкăртстан, Самарпа Чĕмпĕр хутлăхĕсене шутламасан халăх питĕ сапаланса пĕтнĕ. Тепĕр ăру ашшĕ-амăшĕн чĕлхине пĕлмесĕр ӳсет. Çуратма та пăрахрĕç. Çемьере миçе ача? Ялта та 1–2 çеç. Вĕсем те урамра вырăсла калаçса ӳсеççĕ.

**Анисия ИГНАТЬЕВА:** Ырă тĕслĕхсемпе ачасене мăнаçлантарма вĕрентмелле. Çак кунсенче ку ыйтупа Геннадий Никандрович Волков академикпа калаçса илнĕччĕ. Вăл çапла каларĕ: «Хăй вăхăтĕнче асанне чăваш чĕлхи пĕтсен урăх нимĕнле чĕлхе те кирлĕ пулмасть, тĕнче пĕтет тенĕччĕ. Чăваш чĕлхи – хăйне евĕрлĕ чĕлхе. Унăн шалти хăвачĕ пур. Енчен те пирĕнтен каяс текеннисем пулсан, вĕсем – начаррисем, вăйсăррисем. Пĕр паха чăваш темиçе начарринчен лайăхрах».

**Виталий СТАНЬЯЛ:** Карачура, Явăш масарĕсене кайса пăхăр-ха, мĕн чухлĕ çамрăк чăваш выртать унта. Ял ан пушантăр тесен ăна пăхмалла, ĕçлеме вырăн, пурăнма условисем туса памалла. Кĕçех çĕр те юлмĕ, карчăксем, хула çывăхĕнче пурăнакансем, ăна сутса та пĕтерчĕç пулĕ. Малашне мĕнле пурăнĕç?

**–Тăван чĕлхене вĕрентме шкулсенче уйăрса панă сехетсем çителĕклĕши? Ку енĕпе мĕн сĕнетĕр?**

**Николай ЕГОРОВ:** Шкулсене чăвашлатмалла. Чĕлхесĕр пуçне культура предмечĕсене вĕрентмелле. Историпе, географипе, обществоведенипе тата ытти предметпа чăвашла пĕр сăмах та калаçмасан чĕлхе малалла мĕнле аталантăр-ха? Пирĕн учебниксем хатĕрлекен центр та, учебникĕсем те çук. Вĕсене уйрăм хастарсем йĕркелеççĕ. Халăх историйĕпе, культурипе çыхăннисем кирлĕ.

**Анисия ИГНАТЬЕВА:** Хальхи вăхăтра хула шкулĕсенче тăван чĕлхене эрнере виçĕ сехет вĕрентетпĕр. Ăна йĕркеллĕ тытса пырасчĕ. Тепĕр çĕрте виçĕ сехет те çук вĕт-ха, классене те пайламаççĕ. Республикăри шкулсенче компьютерпа чи малтан чăваш чĕлхи кабинечĕсене тивĕçтертмелле пек. Нумай нациллĕ, вырăс программипе ĕçлекен классенче ачасене чăваш чĕлхипе кăсăклантарса яма ахаль те çăмăл мар. Патшалăх вĕрентекенсене çителĕклĕ хавхалантараять-и-ха? Чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсемшĕн ним савăнмалли те çук.

**Виталий СТАНЬЯЛ:** Пирĕн наци шкулĕ пĕрре те çук. Çĕнĕрен йĕркелемелле. Нацишĕн мĕнле компонентсем кирлине шута илсе программа тумалла. Тутарсенчен вĕренмелли пурах.

**Кĕçех Чăваш наци конгресĕн VII Аслă пухăвĕ иртĕ. Съездра, сирĕн шухăшăрпа, мĕнле ыйту чи çивĕч, пĕлтерĕшлĕ пулмалла?**

**Атнер ХУСАНКАЙ:** Кельтсен çапла калани пур: чĕлхесĕр халăх – чĕресĕр халăх. Çавăнпа та «çавра сĕтелте» хускатнă пĕрремĕш ыйту тавра ЧНК VII Аслă пухăвĕнче те çивĕч калаçу пуласса шанатăп. ЧНК тĕллевĕ чăмăртану, хутшăну, çыхăну çеç мар, наци идеологине тăратни те. Хăй вăхăтĕнче пултарнă таран тытса пынă ăна. Халĕ лару-тăру урăхланнă. Çĕнĕ майсемпе ĕçлемелле.

**Виталий ИВАНОВ:** Эпир паян калаçнă тема Конгресăн тĕп ыйтăвĕ пулмалла. Урăхла каласан – Чăваш наци конгресĕ Общество палати вырăнĕнче тăмалла. Тутарсен истори институчĕ çумĕнче этнологи мониторингĕ йĕркеленĕ. Унта 16 çын ĕçлет.

**Николай ЕГОРОВ:** Паянхи ЧНК ертӳçисен тĕллевне курмастăп, халăха чăмăртама хевти çитмест унăн. Конгресс тĕллевĕ наци политикине йĕркелесе тытса пырасси пулмалла. Питĕ ансат япала, унăн хăйне хăй сыхласа хăварас пулать. Çакă çеç. Кирек мĕнле чĕр чун та çакăншăн çеç пурăнать. Конгресăн укçа çук. Апла тăк ăна тытса тăма бюджетра статья тупмалла. Ман шухăшпа, ЧНК патшалăх çумĕнче халăх нушишĕн тăрăшакан орган пулмалла.

**Анисия ИГНАТЬЕВА:** Вĕрентекенсем, ăс паракансем, тиркекенсем темĕн чухлех, анчах та ЧНК хастарĕсене пырса пулăшас-ха текенсене темшĕн курмастĕп.

**Виталий СТАНЬЯЛ:** ЧНКна мĕн тĕллевпе тунă? Ун пирки питĕ лайăх çырса хунă. Çавна пурнăçласан урăх нимĕн те кирлĕ мар.

Надежда СМИРНОВА çырса илнĕ

*«Хыпар», 17.03.2009, 49№*

## ÇАПМА ПĔЛМЕН ПУШĂ...

*Çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăма , ĕмĕте шанса пуçтарăнчĕ чăваш 1992 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕсенче хăйĕн Аслă пухăвне. Икĕ кун ĕçлерĕ Чăваш наци конгресĕ. Тăван халăхшăн чăннипех пысăк та çутă уяв пулчĕ вăл. Тĕнче тăрăх сапаланнă йăхташсене пĕр-пĕринпе çывăхлатасси, çыхăнтарасси çакăнтан пуçланчĕ. Кĕске вăхăтрах пĕчĕк мар ĕçсем тума пултартăмăр. Эстонипе Молдовăран, Самарпа Казахстанран, Латвипе Тюменьрен, вун-вун регионтан Шупашкара ултă хутчен Аслă пухăва пуçтарăнма мехел çитертĕмĕр.*

Иртсе кайнă çав съездсем халь халăха пушар сӳнтерме чĕнекен чан сасси пекех туйăнаççĕ. Конгресс та хăйĕн кĕрлевĕпе кисретсе илчĕ халăхăмăра. Хамăр «иккĕмĕш сортлă» пулнишĕн вăтанманнипе, аттеанне чĕлхине Канашран иртсе Шупашкар урамĕсене çитерме мехел тупнишĕн мăнаçланса та илтĕмĕр.

Малтанхи пухусем уйрăмах хĕрӳ те хавхаланулла иртрĕç. Тăван халăха ĕмĕр-ĕмĕр хумхантарнă ыйтусене хускатакан çеç мар, татса пама пултаракан тытăм вырăнĕнчеччĕ ун чухне Чăваш наци конгресĕ. Питĕ хăюллăн ĕçлеме пуçланăччĕ ентешĕмĕрсем. Пĕр Аслă пуху иртет е тепри – йышăну хыççăн йышăну çуралатчĕ.

Мĕн тума пултарнă çак тапхăрта чăваш ĕçĕшĕн? Хулара та тăван чĕлхене вĕрентме пуçланă, ятарлă музейсемпе гимназисем уçнă. Чĕлхе пирки ятарлă саккун йышăннă. Чăваш Республикин Патшалăх суверенлăхĕ пирки калакан деклараци те пур. Çак тапхăрти çĕнĕлĕхсенчен пĕри – Чăваш Енĕн пĕрремĕш Президентне суйлани.

Конгресăн паянхи ĕмĕт-тĕллевĕ те вун çичĕ çул каяллахи пекех – наци аталанăвĕн тĕп çул-йĕрне, культурăпа чĕлхе малашлăхне, наци пĕрлĕхне палăртасси тата çирĕплетесси, «тĕп» чăвашсемпе (Чăваш Республикинче пурăнакансемпе) тулашри йăхташсен çыхăнăвне çĕнĕлле йĕркелесси. Мĕнлерех шайра пурнăçланса пыраççĕ-ха вĕсем? Мĕн пурри куç умĕнчех. Анчах, тĕпрен илсен, фольклор, йăла-йĕрке шайĕнчен çӳллĕрех çĕкленеймestпĕр çав-çавах.

VII Аслă пуху та вун-вун ыйту тавра калаçу пуçарĕ. Çапах та, ман шухăшăмпа, тĕп тема çакă пулмалла – çитес çулхи халăх Çыравĕ. Вăл чăваш халăхне тĕп тĕрĕслев витĕр кăларать. Наци шăпи, патшалăхăмăрăн малашлăхĕ тӳрремĕнех халăх йышĕпе-шучĕпе çыхăннă. Паянхи съезда Раççей регионĕсенчен çĕр-çĕр делегат килсе çитнĕ пулĕ. Вĕсем кирек хăш облаçпа республикăра çуралнă пулсан та, кирек ăçта пурăнсан та, кирек мĕнле тĕне ĕненсен те, тĕрлĕ сăлтава пула тăван чĕлхепе çырма, вулама, калаçма пĕлмесен те хамăрăн авалхи историллĕ, пайланман, сапаланман, аслă чăваш халăхĕн – пăлхар-сăварсен тăсăмĕн – ывăлĕ-хĕрĕ. Вĕсем хăйсем хăш йăхран, кăкран тухнине асра тытсан тăван халăха сутмĕç, урăх йăх çынни пулса тăмĕç. Çак элчĕсен вара вырăнта, çĕр-шыв тăрăх сапаланнă йăхташсем тĕпленсе пурăнакан ял-хулара, чăвашлăх ĕçне малалла туса пымалла.

Икĕ Çырав тапхăрĕнче – вун виçĕ çулта – 136 пин чăваша çухатрăмăр. Унсăр пуçне хăйсене чăваш текен 337 пин çын тăван чĕлхипе калаçма пултараймасть.

Çĕнĕ Çырав тата мĕн кăтартĕ? Халăха чĕнсе калани, чăвашлăх туйăмне упраса хăварма ыйтни-сĕнни йĕркеллĕ пулăмах. Ăнланулăх, патриотлăх тени кашнин чĕринче пулмалла. Анчах та «чăваш! чăваш!» тенипех малалла утăм хыççăн утăм тума пултарăпăр-и? Пуш параппан çапса мар, ĕçĕмĕрсемпе, халăх ячĕпе тунăскерсемпе «вăратмалла» йăхташăмăрсене, çемçетмелле вĕсен чĕрисене. Акă тулашри чăвашсем валли хаçат уçасси тата «Интер-Хыпар» информаци агентстви туса хурасси, халăх йăла-йĕркине упрама май паракан этнопарк йĕркелесси пирки хăçантанпах калаçатпăр ĕнтĕ. «Лавĕ» вара çав вырăнтах-ха. Темиçе хастар вăйĕпе «Хыпар» ИÇпе ЧНК кăларакан вырăсла-чăвашла «Чăваш тĕнчи» кăларăм вун пилĕк номер тухни çителĕксĕр. Пин тиражпа тата çулталăкра икĕ-виçĕ хут çеç кун çути курнипе мухтанмалла-и пирĕн? Намăс пулмалла. Çак ĕçе пуçăннисене мар... Чи малтанах вĕсене пулăшманнисене. Авă кӳршĕсен, тутарсен, çĕр-шыври çеç мар, тĕнчери тутарсене пĕтĕçтерсе тăракан «Татарские новости» хаçачĕ паха хут çинче пичетленет.

Конгресăн Аслă пухăвĕсене, Мăн Канаш ларăвĕсене килнĕ хăш-пĕр йăхташăмăр хускатнă ыйтусене аса илетĕп те çапла шухăшлатăп: пурнăçланчĕç-ши вĕсем? Акă иккĕмĕш съезд ĕçленĕ кунсенче Камчатка облаçĕнчи чăваш культура центрĕн ертӳçи М. Саватников çапла каланăччĕ: «Инçет Хĕвел тухăçĕнче те чăвашлăха упраса хăварас тĕллевпе пурăнатпăр. Сăмахран, çитес вăхăтрах чăваш ансамблĕ йĕркелесшĕн, çавăн пекех пысăках мар библиотека та уçасшăн. Тепĕр ĕмĕт – ачасен вырсарни шкулне йĕркелесси. Ман шухăшăмпа – регионсенче Чăваш Енри пек программăпа хатĕрленĕ учебниксем мар, кăшт ансатраххисем кирлĕ».

Кашни Аслă пухура тенĕ пекех Самарти чăвашлăх хастарĕсем В. Калмыковпа Н. Давыдов облаçри чăваш шкулĕсене хупса пыни пирки пăшăрханса калаçатчĕç.

«Тĕп» чăвашсенчен пулăшу кĕтсе илме шаннă ентешсен ячĕсене татах асăнма пулать. Кирлех-ши? Вĕсен ячĕ мĕн чухлĕ ытларах пулĕ – çивĕч ыйтусен шучĕ те çавăн чухлех ӳсĕ. Йĕркелесе ярайрĕç-ши Камчаткăра чăваш библиотекипе вырсарни шкулне? Çапла пулсан тем пекехчĕ. Анчах та ача-пăча кĕнекисене, ытти литературăна, вĕрентӳ хатĕрĕсене унта кирлĕ чухлĕ илсе çитерни пирки питĕ иккĕленетĕп. Шупашкарпа чăвашсем пурăнакан ытти регион хушшинчи çыхăнусем вăйсăрланма пуçланинче пĕр ЧНК çеç айăплă-ши? Хăй те общество организацийĕ çеç те, унран ытлашши ыйтма май та çук пулĕ. Ахальтен-и хăй вăхăтĕнче ЧР Патшалăх Канашăн сессийĕнче «ЧНК статусĕ çинчен» ыйту та тăратнăччĕ, анчах хăшĕ-пĕри ăна бюджет укçипе тытса тăни тата республика тулашĕнчи миллиона яхăн ентешĕн усăллă ĕç туни çылăх терĕç-ши?

Çапма пĕлмен пушă хăвна пырса лекет тенĕ ватăсем. Пирĕн çинчен каланăнах туйăнать çакна. «Вырăса ан тух, вырăса ан тух», – тесе вун-вун, çĕр-çĕр хут павраса тăриччен чăваш пулса юлма пулăшакан майсем туса пама тăрăшмалла. Кайран çаксkерсенчен ыйтма хамăра та намăс пулмĕ.

Надежда СМИРНОВА.

*«Хыпар», 20.03.2009, 52№.*

## ХАЛĂХĂМĂР УМĔНЧИ САВАПЛĂ ПАРĂМ

*Вун çичĕ çул каялла Шупашкара чăваш халăхĕн ывăл-хĕрĕ тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнчен килсе çитрĕ: хăйĕн кун-çулĕнчи пĕрремĕш Аслă пухăвне ирттерчĕ. Çакă Раççей патшалăх тытăмĕн улшăнăвĕн вăхăчĕпе пĕр килчĕ. Чăвашсем те хăйсен тĕнчи, пуласлăхĕ çинчен канашласа ырă ĕç турĕç. Акă паян тĕп хулара Чăваш наци конгресĕн VII Аслă пухăвĕ иртĕ. Çавна май унăн президенчĕпе Г.Н. Архиповпа (вун иккĕмĕш çул тытса пырать вăл çак «тилхепене») « тĕл пулса калаçрăмăр. Сăмах, тĕпрен илсен, халăхăмăрăн аталанăвĕ, Конгресс утса тухнă çула тишкерни, малашлăх тата ытти пирки те пычĕ.*

Геннадий Николаевич сăмаха çакăнтан пуçларĕ:

– Эпир пĕрремĕш хут Конгреса пуçтарăннăранпа вун çичĕ çул çитет. Тен, ĕмĕрсен хушшинче, йывăр тапхăрта халăхăмăр пĕрре кăна мар пухăнса канашланă пулĕ. Тăван историе лайăх пĕлменрен чылай ыйтăва хуравлама йывăр-ха. Апла пулин те 1917 çулта Чăваш халăхĕн пĕрремĕш съезчĕ иртнине пĕлетпĕр.

**– Юлашки вун çичĕ çул пирки мĕн калама пулать? Çак тапхăрта палăртнă ĕçсене пурнăça кĕртнĕ-и?**

– Патшалăх Канашĕ Чăваш патшалăхĕн хăй тĕллĕнлĕхĕ (суверенитет), патшалăхăн ячĕ, унăн паллисем çинчен йышăннă документсем Чăваш наци юхăмĕн йышăнăвĕсем урлă пулчĕç. Чăваш патшалăхĕн тытăмĕн пуçлăхĕ – Президент – çинчен йышăннă саккун Чăваш наци конгресĕн пуçарăвĕнчен чĕрĕлсе вăй илчĕ.

**– Чăваш наци конгресĕ 1992 çулхи юпа уйăхĕн 9-мĕшĕсенче Чăваш Енри, Раççейри, НПППри (СНГри) тата тĕнчери халăхсене чĕнсе калани нче çакăн пек йĕркесем пур: «...Чăваш халăхĕн хăйĕн шăпине никамран ыйтмасăрах хăйĕн татса пама тулли право пур, вăл хăйĕн политика тытăмне ирĕклĕн палăртма, экономикăпа социаллă пурнăç тата культура аталанăвне ирĕклĕн йĕркелесе пыма тивĕç...» Халĕ çак йĕркесем хăйсен шухăшне, вăйне çухатман-и?**

– Чăваш наци конгресĕ 1992 çултан пыракан шухăш-ĕмĕте – наци аталанăвĕн тĕп çул-йĕрне, культурăпа чĕлхе малашлăхне, республикăн чăн-чăн суверенитетне, наци пĕрлĕхне палăртас тата çирĕплетес тĕллеве – хăй умне лартать. Мĕнле шайра лартма пултаратпăр эпир вĕсене – ку пĕтĕмпех хамăртан килет. Иккĕленместĕп, эпир мĕскĕн халăх мар. Йышпа çеç мар, Чăвашлăх ĕçĕпе те.

**– Тăхтăр-ха, тăхтăр. Йыш тенĕрен – шăпах пăшăрханмалли самантсем пур пек туйăнать ку енĕпе. Сăмахран, ЮНЕСКО нумаях пулмасть çĕнетсе кăларнă «Тĕнчере çухалас хăрушлăхра тăракан чĕлхесен атласĕнче» палăртнă тăрăх, Европăри 50 чĕлхе пĕтесле лару-тăрура, çав шутра пирĕн тăван чĕлхе те.**

- Чăваш пĕтмест. Çапах та асăрхаттарăва йышăнмаллах. Хальлĕхе хамăра çăлма пултаратпăр-ха.

**– Мĕнле?**

– Тĕллевлĕ ĕçлесе. Шупашкарти шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине

вĕрентекенсем мĕншĕн Конгреспа çывăхланчĕç тетĕр. Вĕсен хӳтĕлевçи пултăмăр тесен те йăнăш мар пулĕ. Сăмахран, маларах тĕп хулара Чăваш учителĕсем пурĕ те 30-ăн пулнă, халĕ – 434. Паллах, çакă та лăплантармасть. Ачасем ячĕшĕн вĕренни мĕн тума кирлĕ. Калаçчăр вĕсем тăван чĕлхепе, мухтанччăр ăна пĕлнипе. Çак енĕпе ытларах ĕçлеттермелле, ятарлă программăсем тумалла. Шкулсенче чĕлхене вĕреннĕ чухне классене пайлассине йĕркелесе çитермелле. Вĕрентекенсем хăйсен пуçлăхĕсемпе пĕр чĕлхе тупайманран пирĕнтен пулăшу ыйтĕç. Халĕ ыйтăва татса панă ĕнтĕ, хулари вĕрентӳ управленийĕпе килĕштерсе ĕçлетпĕр. Хальхи тĕллев – йĕркеллĕ, лайăх вĕрентӳ пособийĕсем кăларасси. Аваллăхсăр малашлăх çук. Шкулсенче чăваш халăх историне вĕрентмелле. Аттилпа, тăван халăхăн ытти паттăрĕпе тивĕçлипе мухтанмалла. Çавăн пекех кашни шкулта фольклор коллективĕ кирлĕ. Культурăна, йăла-йĕркене ачаранах хисеплеме хăнăхтармалла.

Шупашкар чăваш хули пулса çитеймерĕ. Хулара чăваш чĕлхине мĕнле хисепленине тишкерсе рейдсем ирттеретпĕр, кăтартмăшсем мĕншĕн вырăсла е ытти чĕлхепе, анчах чăвашла мар пулни пирки хула администрацине «тĕпĕртеттерсе» илетпĕр пулсан та «лав» вырăнтан тапранаймасть. Ку енĕпе пирĕн вăй çеç çителĕксĕр пулĕ. Чăвашлăха хӳтĕлессине çӳлти шайра йĕркелесе пыни кирлĕ. Сăмахран, тăван чĕлхепе çырман рекламăшăн налук ытларах тӳлеттермелле тата ыт.те.

**– Тăван халăхăн çурри республика тулашĕнче пурăнать. Чăваш теме пулать-ши вĕсенчен чылайăшне –тăван чĕлхепе калаçма, çырма пĕлменскерсене, чăваш пурнăçĕпе пурăнманскерсене. Тепĕр çул– Раççейри халăх Çыравĕ. Аслă пухура ку енĕпе калаçу пулатех ĕнтĕ.**

– Чăвашсем тĕнче тăрăх сапаланнă пулин те авалхи халăх пĕтмелле мар, вăл çут тĕнчерен çухалма пултараймасть. Чĕлхемĕре, халăхăмăра наци чăмăртăвĕ урлă упраса хăвармалла. Тĕнче тăрăх сапаланнă йăхташăмăрсене Çырав вăхăтĕнче несĕлĕмĕрсен умĕнчи яваплăхăмăр пирки, эпир йăх-тымарсене маннăскерсем маррине аса илтерес тетпĕр.

Аслă пухура илнĕ шухăш-кăмăлпа, вăй-хăватпа вырăнсене çитсен халăхпа ĕçлеме чĕнсе каласшăн.

**– ЧНК пирки тĕрлĕ калаçакан пур, эсир хăвăр мĕн шухăшлатăр çакăн пирки?**

– Вĕрентекен нумай, анчах пулăшас текен сахал. Тăван халăхшăн чунпа тăрăшакансене яланах хапăл Конгресра. Кирек кам та пытăр, сĕнӳсем патăр. Чăваш наци конгресĕ – общество организацийĕ. Бюджетран вăл е ку мероприяти йĕркелеме укçа уйăрнисĕр пуçне пире урăх пĕр пус та памаççĕ. Штата хамăр ĕçлесе илекен укçапа тытса тăратпăр. Çурта пăхса тăма тата мĕн чухлĕ нухрат кирлĕ. Çавăнпа та Конгресс çыннисене харам пыр тесе калама çук.

**– Тепĕр чухне çапла каланине те илтме тивет: ЧНК ертӳçисем хăнаран хăнана, юрласа та ташласа çеç çӳреççĕ. Çакăн пирки мĕнле хуравланă пулăттăр?**

– Çынпа çын хутшăнса пĕр-пĕрне шанса калаçнинчен пахи çук. Тĕрĕссипе, юбилейсене кайса саламлама та çын çитмест пирĕн. Чăваш тĕнчи анлă, пысăк, штатра вара сахалăн. Кашни регионпа уйăрммăн ĕçлекен пулмалла. Ун пек чухне яваплăх та пысăк, ĕçĕ те курăмлă пулĕ.

**– Юрă-ташă, юбилейсем... Ку – пĕр япала. Çапах та кунти чăвашсемпе тулашрисен çыхăнăвне çĕнĕлле йĕркелемелле пек. Наци пĕрлĕхне çĕнĕ майсемпе аталантармалла пулĕ. Мĕнлерех ĕçлемелле?**

–Чăвашлăха саракан информаци хатĕрĕсем (хаçат, журнал, радио, телекурав) кирлĕ, вĕрентӳ ĕçĕ тĕллевлĕ пулмалла. «Чăваш тĕнчи» хаçат, йывăрпа пулсан та, пичетленме пуçларĕ. Анчах çак шайра çеç пулмалла мар унăн. Радио ыйтăвĕ те татăлнă пекех. Телекурав, литература ыйтăвĕсем шухăшлаттараççĕ. Çав вăхăтрах тулашри йăхташăмăрсен хăйсен терт-нуши, вĕсем тăван чĕлхене вĕренмен, йăла-йĕркене тытса пыман, çавăнпа культурăран та ютра тăраççĕ. Ĕçе ирĕксĕрех юрă-ташăран, фольклортан йĕркелесе яма тивет.

**– Геннадий Николаевич, эсир ЧНК президентĕнче 12 çул ĕçлетĕр. Йăлăхтармарĕ-и? Куçа хупса тĕнчен тăват кĕтесне тарас килекен пулмарĕ-и? Хăвăр умăра лартнă тĕллевсене пурнăçланă-и?**

– Чи малтанах çак енĕпе уçăмлăх кĕртем: президент тилхепишĕн çунмастăп эпĕ. Çур çул каяллах ĕçтешсене урăх çын шырама ыйтрăм. Анчах ЧНКна ăна е теприне шанса парасчĕ тенине илтмерĕм. Манăн йĕркеленсе çитнĕ команда пур. Эпĕ ăна шанса ĕçлетĕп. Енчен те унти çынсем мана шанмаççĕ пулсан – урăх калаçу.

Тĕллевсем пысăк. Паллах, пурне те пурнăçлайман. Регионсенче наци культура автономийĕсем, культура пĕрлĕхĕсемпе центрĕсем йĕркелесе ярас тĕлĕшпе (халĕ вĕсем 80 яхăн) ăнăçлă ĕçлеме пултарнишĕн кăмăллă. Раççейре çеç мар, чикĕ леш енче те пур вĕсем. Тюменьре ĕçлĕ чăвашсем пĕр чĕлхе тупса чăмăртанни, Чĕмпĕрсем чăваш шкулĕсемпе пикенсе ĕçлеме пуçлани, Эстонири, ытти вырăнти йăхташсем хăйсем пирки илтмелле ĕçлени савăнтарать.

Конгресс ĕçĕнче çитменлĕх те сахал мар. Ют çĕр-шывсенчи чăвашсемпе çыхăнусене лайăххах та çирĕпрех йĕркелемелле. Вун-вун ĕç, вун-вун тĕллев. Пĕтĕм ыйтăва ытама кĕртме çук. Çапах та тăрăшмалла, малалла утмалла. Чăваш Республикинче чăваш чĕлхи вырăс чĕлхипе пĕр тан хуçа пулса тăмасăр халăх пуласлăхĕ пирки калаçма кирлĕ мар. Эпир паян çакăншăн яваплă. Çавăнпа та Конгресăн тĕп тĕллевĕ – чăваш чĕлхине упрасси, аталантарасси, ун сумне çĕклесси. Ку – пирĕн мăн асаттеасаннесен умĕнчи тивĕç. Чăваш Ен – пирĕн кил. Аякри йăхташăмăрсемшĕн те вăл чăн-чăн тăван кил пулса тăтăр, мĕншĕн тесен çĕр чăмăрĕ çинче Чăвашăн патшалăх тытăмĕ урăх çук, Чăваш Ен пĕртен пĕр вырăн. Çавăнпа та тулашри ентешсемпе ĕçлес тĕлĕшпе республикăн статусĕ пысăкрах пулмалла. I Аслă пухурах делегатсем наци политики енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ çинчен резолюци йышăннăччĕ.

Чăваш наци юхăмĕнче кашни çын валли ĕç тупăнать. Эпир пурте пĕр халăх ачисем. Халăхăмăр умĕнче вара кашни чăвашăн сăвапла парăм пур.

Надежда СМИРНОВА калаçнă.
*«Хыпар», 20.03.2009, 52;.*

## ТĔП ТĔЛЛЕВ – ХАЛĂХА УПРАНСА ЮЛМА ПУЛĂШАССИ

Кашни халăхăн хăйĕн кун-çулĕ, хăйĕн шăпи. Пĕрисем вăйланса пыраççĕ, теприсем - чакса, виççĕмĕшсем тахçанах куçран çухалнă, ячĕсене те историксем асăннинчен кăна пĕлетпĕр. Çак тарана çити упранса юлнă сăвар-чăвашсем паян мĕнле шайра-ши? Атьăр-ха хамăра хамăр улталаса пурăнар мар, тĕрĕслĕхе уççăн йышăнар, халăхăмăр куç умĕнчех чакса, саланса пырать вĕт. Пĕтĕм тĕнче пире хирĕçле тейĕн. 90-мĕш çулсем те, хальхи кризис та пире салатса яма сиксе тухрĕç пуль тесен те ытлашши мар. Çавăнпа пирĕн пĕр тĕллеве пăхăнса ĕçлемелле. Çакă вăл – тăван халăхăмăра упранса юлма пулăшасси. Ĕçĕ вара кунта кашнин валли мăй таран, кам мĕнле вырăнта вăй хунине пăхмасăрах. Пурте тĕп тĕллеве ăнланса пĕр лава кӳлĕнсен халăхшăн усăллă ĕç тума пулатех. Кунта нимĕнле иккĕленӳ те пулма пултараймасть, И.Я. Яковлев тĕслĕхĕ кăна мĕне тăрать.

Паянхи лару-тăрăва илсен вара пур пĕрех шикленӳ сирĕлмест: эпир тăрăшнипех халăха упраса хăварма пулĕ-ши? Халĕ те тăрăшатпăр вĕт-ха, анчах усси сахал, халăхăмăр вăйланса пырать теме çук. Çавна май ирĕксĕрех ыйту хыççăн ыйту сиксе тухать: сыхланса, упранса юлас туртăм халăхра хăйĕнче пур-ши, пур пулсан мĕнле шайра-ши, чăваш хăй пуласлăхĕ пирки мĕн шухăшлать-ши? Мĕн пирки шухăшласа пуçне ыраттарать-ши ялти е хулари чăваш , Чĕмпĕр тăрăхĕнчи е Пушкăртстанри тăванăм? Çаксене наука шайĕпе тĕпчесе тунă пĕтĕмлетӳсем пур-и пирĕн? Çук пулсан эпир хамăр халăхăмăра пĕлетпĕр теме пултаратпăр-и?

Тӳрех каламалла: çак ĕçре наука пулăшăвĕ çителĕксĕрри сисĕнет. Паянхипе ыранхишĕн кирлĕ ăс-тăн вăйне авалхи пирки чакаланса ларса пĕтерсе пыратпăр. Халăха ватăлтарас тесе миф хыççăн миф çурататпăр, Тигрпа Евфрат хушшине çити кĕрсе каятпăр, темĕн те пĕлетпĕр, анчах паянхи

чăваша кăна пĕлместпĕр. Халăхпа мĕн пулса иртнине тĕпчекенсем çукпа пĕрех. Хальхи этнологсемпе социологсен ĕçĕсем курăнсах каймаççĕ.

Иртнине, авалхине пĕлмесĕр малалла кайма çук текен те тупăнĕ. Анчах çакă сăмах вăййи кăна. Тахçанхи, пулса иртни çаврăнса килмест, ун çути сÿннĕ. Эпир текех нихăçан та Аттил çулĕпе тепĕр хут утса тухаяс çук. Пĕрмаях каялла пăхса утсан пуç та пăрăнса ларма пултарать. Ыранхи кун паян пуçланать тенине манас марччĕ. Тĕрĕссипе, паян пирĕн наука академийĕ те, мĕнле тĕпчевсем чи кирлине кăтартса йĕркелесе пыракан центр та çук. Гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнчи йышлах мар пĕчĕк шалуллă ушкăн ĕлкĕрсе пыраймасть. Аслă шкултисен пулăшăвĕ те çителĕксĕр. Çемйине укçа-тенкĕрен йĕркеллĕ тытса пырас тесе ик-виçĕ çĕрте ĕçлекен ăсчахăн наука валли вăхăт та, вăй та юлмасть.

Çак калаçури **пĕрремĕш пĕтĕмлетÿ** пирĕн çапларах: пурнăçа е лару-тăрăва урăхлатас тесен чи малтан мĕне тата мĕнле улăштармаллине пĕлмелле. Халăха пулăшас тесен те çавах. Апла тăк пурин те - чиновниксен те, директорсен те, Наци конгресĕнче вăй хуракансен те наука кăтартăвне шута илсе, паянхи чăвашăн шухăш-кăмăлне, пурнăçри туртăмне пĕлсе ĕçлемелле.

Халăха упраса-сыхласа пыракан тĕп вăйсенчен пĕри вăл – тăван чĕлхе. Хамăр хăш халăх ачи пулнине çавă аса илтерсех тăрать. Чĕлхе вăл тĕрлĕ çĕрте, тĕрлĕ вăхăтра çуралнă ăрусене пĕрлештерсе, сыпăнтарса пыракан чи çирĕп çилĕм. Халĕ вара пирĕн пата чуна хытă ыраттаракан хыпар çитрĕ: ЮНЕСКО пĕлтернĕ тăрăх – чăваш чĕлхине пĕтсе пыракан чĕлхесен шутне кĕртнĕ иккен. Сăлтавĕ те пурах пуль çав. Йывăрлăхĕ вара тахçанах пуçланнă. Совет халăхĕ тăватпăр текен КПСС политики пире калама çук пысăк сиен туса хăварчĕ. Чăваш чĕлхине шкулта хĕснине кура ÿснĕ темиçе ăру тăван чĕлхерен сивĕнсе пычĕ, халĕ вĕсен ачисем те çавах. Çакă та самай пысăк йывăрлăх кÿрет.

Эпир чĕлхе ыйтăвĕ çине яланхи пекех халĕ те пĕр майлăрах пăхма хăнăхнă. Ашшĕ-амăшне, учительсене ятлатпăр, тепĕр чух вĕрентÿ министрне те сăмах тивет. Анчах çак ĕçе ăнăçлă туса пырасси вĕсенчен кăна килмест çав. Кунта ачан пуласлăх ĕмĕчĕ пысăк вырăн йышăнать. Енчен те шкул ачи хăй тăван яла, тăван республикăна кирлех маррине курса, мура кайса ĕçлемеллине пĕлсе ÿсет тĕк тăван чĕлхене вĕренес туртăм чакса пырать. Тăван чĕлхене шкулта ăнăçлă вĕрентесси ĕç ыйтăвĕпе, экономикăпа тачă явăçса тăрать иккен. Республикăри йĕркеллĕ лару-тăру вара тăван чĕлхешĕн те лайăх, çамрăксене пĕр-пĕринчен, ашшĕ-амăшĕнчен пăрса ямасть. Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн тăван чĕлхемĕре пур майпа та хÿтĕлеме тăрăшмалла, вăл пĕтсен халăхăмăр та пĕтет. Пирĕн **иккĕмĕш пĕтĕмлетÿ**: çурт çунса кĕлленсен ăна çĕнĕрен лартма пулать, ача вилсен –теприне çуратма, чĕлхе пĕтсен – ăна çĕнĕрен чĕртсе тăратма çук. Чĕлхе шăпи – халăх шăпи.

«Ыранхи кун сăнарĕ» кĕнекере эпир чăваш сăпки ялта тесе çырнăччĕ. Ачи тухса ан ÿктĕр тесен сăпка тĕпĕ шанчăклă пулмалла. Çав шанчăка пире ĕç кăна парнелеме пултарать. Ял пурнăçне ĕç кăна чун кĕртет. Авалтан пыракан йĕрке çапла. Паян пире ял мĕнне тĕрĕс ăнланманни тĕлĕнтерет. Мускав шучĕпе ял вăл хулана çăкăр, какай, сĕтпе çăмарта парса тăракан вырăн кăна иккен. Ял сăмаха илтсенех чиновниксем тÿрех унтан мĕн илесси пирки калаçаççĕ. Ял вăл çынсем пурăнакан вырăн пулнине, кунта ачасем çуралса ÿснине, ялăн хăйĕн культури, экономики пуррине, кунтах вырăнти политиксем, философсем, артистсем, тухтăрсем, учительсем, ал ăстисем, ĕç геройĕсем пурăннине Мускавсем шута илесшĕн мар. Ял вăл хăйсене майлă пĕчĕкçĕ патшалăх, унта тем те, такам та кирлĕ. Ăна ĕçлĕ алăсем тытса тăраççĕ. Ĕç çук çĕрте ял пурнăçĕ пăтрашăнса каять, çамрăкĕсем тухса каяççĕ те ваттисем кăна тăрса юлаççĕ. Халăха упрас тесен яла пĕтме памалла мар, экономика тилхепине тĕрĕс тытса пымалла.

Ĕç пĕлтерĕшĕ пурлăхшăн кăна мар. Вăл çынсене кĕске вăхăтрах пĕр ушкăна чăмăртанма пулăшать, пĕр тĕллевлĕ пулма вĕрентет, çын пултарулăхне уçса парать. Ĕççĕр чăваш çынлăхне çухатать. **Виççĕмĕш пĕтĕмлетÿ** вара çапларах: çĕнĕрен йĕркеленĕ кашни ĕç вырăнне, çĕнĕ цех е агрофирма уçнине халăха упранса юлма паракан чи пысăк пулăшу тесе хакламалла, ялсемпе хуласен хушшинчи ăмăртусене пĕтĕмлетнĕ чухне ĕç вырăнĕ тăвас ыйтăва мала лартмалла.

**Тăваттăмĕш самант** вара – этнодемографи ыйтăвĕ. Урăхла каласан, чăваш çуратса ÿстересси. Эпир халĕ юратăва хамăра майлă ĕçлеттерме вĕренсе çитеймен-ха, чылайăшне, уйрăмах аслă пĕлÿ илнисене, И.Я. Яковлев стандарчĕ илĕртет. Паллă ĕнтĕ, урăх халăх çыннипе чăмăртаннă çемьере Чăвашлăх çĕнтерейместь, наци туйăмĕ ачисем çине куçаймасть, йăх таталать. П.П. Хусанкай стандарчĕ вара вăйлăн аталанса пырай-масть. Поэтăмăра идеал вырăнне хурса хаклакансем те унăн стандартне йышăнмарĕç. Юрать-ха ял пур, хула пирĕншĕн шанчăклă вырăн мар.

Хальхи вăхăтра ытларах уйрăм çын прави пирки калаçнине илтме пулать. Чăваш ăс-тăнĕпе пăхсан малти вырăнта çемье прави пулмалла пек.

**Пиллĕкмĕшĕ** – çирĕп сывлăхлă ăру çитĕнтересси. Чăвашăн пурĕ те пĕр чир кăна – ар вăрлăхне эрехпе начарлатни. Калас пулать: пирĕн мăн асаттесем ĕçкĕпе иртĕхмен, хăнара та, уявра та сăрапах çырлахнă. Чăваш юнĕнче, ÿт-пĕвĕнче спирта хирĕç кĕрешес хăват пысăк мар. Çавăнпа та ĕçкĕ чирĕ ăна хăвăрт çĕнсе илет. Сăмахпа çеç мар, урă пурнăç йĕркине пирĕн хамăрăн кăтартса пымалла, урă чăвашсен ушкăнне (УчУ) сарма тăрăшмалла.

**Улттăмĕшĕ** – ăс-тăна, тĕнче курăма, идеалсене çĕнетесси. Кивĕ шухăшлавпа пурăнакан чăвашăн пуласлăхĕ пысăк мар, ăна хальхи пурнăç айккинелле тĕксе ярас хăрушлăх пур. Çапла ан пултăр тесен çыннăн хăйĕн улшăнма тăрăшмалла, ваттин хăйĕн çамрăкки патнелле туртăнмалла, ăрусен хушшинчи çыхăнăва хавшама памалла мар. Паянхи чăваш чунĕ йăвине такам аркатнă кайăк пек, ниепле те лăпкă вырăн тупаймасть; чăваша çăкăр-тăвартан та ытларах чун çимĕçĕ çителĕксĕрри пăшăрхантарать. Тĕнче культуринчи глобализаци юхăмĕ тăван культурăпа искусствăна çăтса ярас хăрушлăх та çав тери пысăк. Çак хăрушлăха сирсе яма учительсем, журналистсем, çыравçăсемпе искусство çыннисем пĕр шухăшлă пулса ĕçлени кирлĕ. Вулакан халăхсен шутĕнчен тухса ÿкес марччĕ, чăваш чунне, ăс-хакăлне çĕнĕ сăнарсемпе, идеалсемпе пуянлатасчĕ, «Асран кайми» юрăри вилĕм сăнарне хĕссе кăларасчĕ. Наци гимнĕнче «вилĕм» сăмах пулмалла мар. Пирĕншĕн «Нарспи» поэмăри вилĕм сăнарĕ те ытлашшипех. Пире паян чуна хавхалантаракан, пуласлăха йыхăракан гимн кирлĕ.

**Çиччĕмĕшĕ** – пĕр шухăшлă пулса, халăх ăс-тăнĕпе, вăйĕпе меллĕ усă курса ĕçлесси. Пирĕн чăваш ÿчĕпе чăмăртаннă пĕчĕкçĕ патшалăхăмăр пур. Тÿрех каламалла: чăваш пулман тăк Шупашкар та, министрсем те пулас çукчĕ. Анчах правительствăпа халăх хушшинчи хутшăнусемпе çыхăнусене ăнланулла та çирĕп теме çук. Пирĕн министрсем, чиновниксем халăх ĕçченлĕхĕпе, хастарлăхĕпе усă курма вĕренсе çитеймен-ха.

2009 çула Н.В. Федоров Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕ, ял çыннисен умне пысăк тĕллевсем лартрĕ, пулăшăвĕ те пулатех ĕнтĕ. Çакă пирĕншĕн питĕ меллĕ самант, ĕç вырăнĕсем туса ялтан тухса кайнă вăй питти çынсене каялла çавăрса килме те май парĕ.

Ĕçĕ вара Наци конгресĕ валли те хушăнĕ. Эпир иртнĕ çулсенче чĕлхе, культура, искусство ыйтăвĕсене çивĕчрех лартрăмăр, ĕçне те сахал мар турăмăр. Кризис тапхăрĕ пирĕн ума урăхла тĕллевсем лартать. Паян экономика ыйтăвĕсене малти вырăна хурса ĕçлемелле.

Юлашки вăхăтра ют çĕр-шыв çыннисем те килкелесе каяççĕ. Ку пĕртте япăх мар. Тĕллевĕ те паллă: вĕсен хăйсем туса кăларнă тавара вырнаçтармалла. Чăваш чунне пурлăх шайĕ кăна тивĕçтерме пултараймасть. Ăна тăванлăх, туслăх ăшши кирлĕ. Тен, пирĕн хамăра юнпа та

çывăх тăвансемпе, Дунай тăрăхĕнчи пăлхарсемпе туслашса экономикăпа культура çыхăнăвĕсене вăйлатмалла? Пурте хăйсен тăванĕсене шыраççĕ.

Паллă ĕнтĕ, пĕчĕк тĕллевсемпе пурăнакан нихăçан та пысăк çитĕнӳ тăваймасть. Атьăр-ха хамăр ума пысăкрах тĕллевсем лартар та халăхăмăра пулăшас ĕçе вăйлатар. Пирĕн хастарлăха хамăр Туррăмăрах сыхлатăр, пире яланах пулăшса пытăр. Çапла пултăр!

Анатолий КИБЕЧ, ЧНК Ваттисен Канашĕн ертӳçи.
*«Хыпар», 20.03.2009, 52;№.*

## ÇИЧЧĔ ВИÇРĔМĔР, ТĔЛЛЕВСЕНЕ ПАЛĂРТРĂМĂР

*Тăван халăхăн ваттисен сăмахне – «Çиччĕ виçсе пĕрре кас» тенине– çапларах çаврăнса калас терĕмĕр. Ун патне таврăнни ахальтен мар. Çиччĕмĕш хут пуçтарăнчĕ тĕнче тăрăх сапаланнă чăвашăмăрсен ывăл-хĕрĕ Шупашкара Аслă пухăва. 1992 çултанпа çичĕ хут виçрĕмĕр, çичĕ хут канашларăмăр хамăрăн шăпамăр пирки. Йышăнăвне тума – тĕллевсене палăртма та вăхăт çитрĕ пулĕ.*

**Ĕнер, пуш уйăхĕн 20-мĕшĕнче, тĕп хулари К.В. Иванов ячĕллĕ чăваш патшалăх академи драма театрĕнче Чăваш наци конгресĕн VII Аслă пухăвĕ ĕçлерĕ.** Çиччĕмĕшне, Чăвашăн чи сăвапла хисеп шутланаканнине, Раççейĕн 26 регионĕнчи 650 ытла йăхташ хутшăнчĕ. Унсăр пуçне чикĕ леш енчи ултă çĕр-шывран делегатсем килнĕ. Сумлă хăнасем те чылайăн пулчĕç, ЧР Президенчĕ **Н.В. Федоров,** ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕ **М.А. Михайловский**, Раççей халăхĕсен Ассамблейин ертӳçи **Р.Г. Абдулатипов**, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ - Чăваш Республикин Раççей Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представителĕ, çĕр-шыври Чăваш наци культура автономийĕн ертӳçи **Г.С. Федоров**, ЧР культура министрĕ **Р.М. Лизакова**, ЧР вĕрентӳ министрĕ **Г.П. Чернова**, Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ **Г.Н. Волков** академик тата ытти паллă йăхташсем.

Халăхăн лайăх йăла пулнă: аслă ăрурисем çамрăксене пил панă. Çав сăмахсенче вĕсем Чăвашра чĕрĕлĕх, пысăк йыш, çамрăксене хастар пулма, йăла-йĕркене малалла тытса пыма суннă. Хальхинче те авалран килекен йăла пирки манмарĕç:ЧНК Ваттисен Канашĕн мухтавлă çыннисем **Н.Е. Наумов**, **В.К. Кузьмина**, **В.А. Дедушкин** Аслă пухăва килнисене пил пачĕç. Чĕмпĕр хутлăхĕнчи делегатсен пĕр ушкăнĕ Аслă вĕрентекенĕмĕр И.Я. Яковлев палăкĕ умне чечек çыххи хума кайрĕ. Чăваш наци конгресĕн гимнне, несĕлĕмĕрсен халăх юррине – «Асран кайми» юрра – ура çине тăрса юрларĕç. Залри халăха сцена çинчен Чăваш халăх артисчĕ **Вячеслав Христофоров** тата Сарă ту облаçĕнчи Чăваш наци культура автономийĕн председателĕ **Валерий Клементьев** хăйсен уçă та мăнаçлă сассипе пулăшса пычĕç.

Çĕнĕ йăла кăлармасăр, мĕн пуррине пăрахăçламасăр ĕçе пикенчĕ Аслă пуху. Кун йĕркинче çак ыйтусем пулчĕç, Чăваш наци конгресĕн президенчĕн **Г.Н. Архиповăн** «Икĕ Аслă пуху хушшинче туса ирттернĕ ĕçсем тата малашлăх тĕллевĕсем çинчен» доклачĕ, «2010 çулта Пĕтĕм Раççейри халăх Çыравĕ ирттересси çинчен», «Чăваш наци конгресĕн Уставне улшăнусем кĕртесси çинчен» çум докладсем, делегатсем тухса калаçни. Çак пысăках мар статьяра пурин пирки те тĕплĕн чарăнса тăраймăпăр. Тĕплĕнрех çитес номерте çырса кăтартăпăр.

Манăн вара чи малтанах ЧР Президенчĕ **Н.В. Федоров** каланă сăмах пирки чарăнса тăрас килет. Николай Васильевич хăй тытса пыракан патшалăх политикинчен пĕри наци ăс-хакăлне упраса хăварасси пулнине палăртрĕ. Çавна май республикăра ку енĕпе мĕнле ĕçсем туса ирттернине каларĕ. Николай Федоров чăваш ялне упраса хăварас тĕлĕшпе пурнăçланакан программăсене те аса илчĕ. Çут çанталăк газĕ, çемье врачĕн офисĕсем, тĕслĕх вулавăшсем, асфальт сарнă çулсем пирĕншĕн çĕнĕлĕх пулма пăрахрĕç ĕнтĕ. Тата çĕнĕ тĕллевсем тăраççĕ умра. 2009 çула Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ тесе палăртни те çакăнпах çыхăннă пулĕ.

**Г.Н. Архипов** доклачĕ пирки мĕн калама пулать-ха? Конгресс мĕн туни, ĕçлени – куç умĕнче. Мĕн пуррине пытараймăн. Анчах тата хăш енĕпе ытларах вăй хумалла? Пире мĕн çывăхлатать, пĕрлештерет? Чĕлхе. Ăна упраса хăварас тĕлĕшпе, чĕлхесĕр халăх пулса юлас марччĕ тесе ĕçлемелле. Çапла тума вĕрентӳ ĕçне вăйлатни, наци регион компоненчĕсене каялла тавăрни пулăшĕччĕ.

Тăван халăх историне пĕлес тесен мĕнле кĕнеке вуламалла? Чи малтанах ăна шкул программине кĕртмелле. Ку енĕпе вара пиртен вăхăтсăр уйрăлнă В.В. Николаевăн кĕнекисене ытларах пропагандăламалла. Ятне вилĕмсĕрлетес тĕлĕшпе тĕп хулари музей-хваттерĕ умĕнче Василий Васильевичăн бюст-палăкне лартмалла. ЧНК хастарĕсене Шупашкарăн çуралнă кунне тĕрĕс палăртманни те, этнопарк тăвас ыйту вăраха тăсăлни те, Республика кунĕнче аякри йăхташăмăрсене пĕтĕçтерекен чăн Чăваш Акатуйĕ йĕркелеменни те, çавăн пекех «Чăвашкино» мухтавне çĕнĕрен чĕртсе тăратасси те, наци интеллигенцийĕ халăх ĕçĕнчен аякра тăни те, çамрăксен форумне пухайманни те, Чăваш халăх çуртне тытса тăрассипе çыхăннă самантсем те тата ытти те пăшăрхантараççĕ. Наци вăйĕ – халăх пĕрлĕхĕнче. Вăл çук пулсан пĕр-пĕрне кĕвĕçетпĕр, курайmастпăр, ура хуратпăр пулсан... Акă мĕн пирки çичĕ хут çеç мар, çитмĕл çичĕ хут та калаçнă пулĕ. Касма – хамăр ĕç-хĕле хак парса тивĕçлĕ йышăну тума – шăпах вăхăт çитнĕ мар-и.

Раççей халăхĕсен Ассамблейин ертӳçи **Р.Г. Абдулатипов** хăйĕн общество майĕпе ĕçлекен организацийĕн ĕç-хĕлĕ тата Чăваш халăхĕн пĕлтерĕшĕ пирки чарăнса тăчĕ. Мĕн тума пултарнă? Ассамблея Раççей патшалăх наци политикин концепцине йĕркелесе яма пулăшакансенчен пĕри.

– Çитес çул – Çырав, – терĕ Р. Абдулатипов. – Тахçан Раççейре 800 ытла халăх теттĕмĕр. Вĕсене тĕрлĕ майлă пайласа тухса 165 çеç хăварчĕç. Шухăшласа пăхăр-ха: çавăн чухлĕ культура, пуянлăх, кризиспа кĕрешмелли тĕслĕх! Эпĕ вара Чăваш Енре кризиса кĕрес шухăш пуррине туймарăм. Пил паракан ватăсен калаçăвне е халăх артисчĕн юррине итлерĕм-и – вĕсенче хамра «чăваш» пуррине туйрăм. Эпĕ – авар çынни, анчах пирĕн йăхсем пĕр кăкран тухнă. Пурнăçра чи хăрушши экономикăпа финанс кризисĕ мар, халăхсен ăс-хакăл кризисĕ, халăх традицийĕсене çухатса пыни. Апла пулас мар тесен хамăр хастарлăха ӳстермелле, çине тăрса ĕçлемелле.

Р.Г. Абдулатипов чăваш халăхĕн пархатарлă ĕçĕ умĕнче пуç тайса ЧР Президентне **Н.В. Федорова** Ассамблейăн ылтăн медалĕпе наградăларĕ. **Г.Н. Волков** академик шухăшĕпе – ЮНЕСКО халăхсен пĕтес хăрушлăх пур пирки «чан çапни» чăн чăвашсене пырса тивмест. «Чăваш пулса çитейменнисем çеç кайĕç, хăватлисем, маттуррисем юлĕç. Малашлăха ĕненетĕп, ăна сире курса шанатăп», - терĕ вăл.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 21.03. 2009, 53–54 №.*

## «ТĔП ТЫМАРĂМĂР – ЧĂВАШ ЧĔЛХИ!..»

*Пуш уйăхĕн 20-мĕшĕнче, кăнтăрлахи апат хыççăн, Чăваш наци конгресĕн VII Аслă пухăвĕ малалла ĕçлерĕ. Конгресăн ревизи комиссийĕн отчетне итлесе çирĕплетнĕ хыççăн ăна сӳтсе яврĕç. Мĕнле хакларĕç-ха депутатсем Г.Н. Архипов президентпа ЧНКн икĕ съезд хушшинчи ĕç-хĕлне? Паллах, хаçатри пысăках мар статьяра пурин сăмахне-шухăшне илсе кăтартма майĕ те çук. Çавăнпа эпир çивĕчрех самантсем, паха сĕнӳсем çинче ытларах чарăнса тăнăшăн вулакансем кăмăлсăр ан пулччăр...*

– Çĕпĕр хутлăхĕнче чăваш пайтах. Вĕсенчен хĕрӳллĕ салам илсе килтĕмĕр. Хамăра Шупашкара, VII Аслă пухăва чĕннĕшĕн чĕререн тав тăватпăр, – терĕ Красноярск тăрăхĕнчи чăвашсен пĕрлĕхĕн ертӳçи **Геннадий Храмов.** – Чăваш Ен Президенчĕн Н.В. Федоровăн саламĕ те, Раççей халăхĕсен Ассамблейин канашĕн ертӳçи Р.Г. Абдулатипов каланă сăмах та, ЧНК президенчĕ Г.Н. Архипов тунă доклад та килĕшрĕç пире. Çав вăхăтрах – шухăшлаттараççĕ те. Чи малтан – чăваш халăхĕпе чăваш чĕлхин тĕнчери вырăнĕ тата шăпи пирки. Хаçатра вулатăп та – икĕ çырав хушшинче 136 пин чăваша çухатрăмăр

иккен! Чăвашла калаçман чăваш йышĕ те 400 пине яхăн. Çакă – çуллен вăй илсе пыракан инкек – Красноярск тăрăхĕнче те палăрать. Темиçе çул каялла ытти национальноçсен хушшинче эпир, чăвашсем, 4-мĕш вырăнтаччĕ, халĕ – çиччĕмĕшĕнче. Темле тăрăшсан та ачасемпе мăнуксем чăвашла калаçасшăн мар. Вырсарни шкулĕ те, фольклор та пулăшаймаççĕ... Наци туйăмĕ хавшанин сăлтавне тупмаллах. Раççейри, чикĕ леш енчи чăваш диаспорисене вăйлăн ĕçлеттерсе яма пултаракан тĕп çул-йĕр – концепци – çукки чăрмантарать-ши пире е хамăр сÿрĕкленни-ши? ЧНК статусне тахçанах çирĕплетмелле. Общество организацийĕ мар, патшалăх çирĕппĕн пулăшса тăракан мал ĕмĕтлĕ, кашни рагионти чăваша хÿтĕлеме тата çĕнĕрен пĕр чăмăра пĕрлештерме ăнтăлакан центр пулмалла унăн...

Делегатсен пĕр пайĕ Геннадий Храмов шухăшĕпе пĕр евĕрлĕрех калаçнине палăртмаллах. Тĕрĕссипе пĕрлех кунта лару-тăрăва çивĕчлетме тăрăшни те сисĕнчĕ пулас. Тепĕр тесен, вĕсене те ăнланмалла, чун ыратăвне, чун пăлханăвне тата ăçта уçăр-ха делегатсем – темиçе çĕр е темиçе пин çухрăмран шурă Шупашкара килнĕскерсем?..

Ку енĕпе Эстонири чăваш пĕрлĕхĕн ертÿçин **Ираида Захаровăн** сăмахĕ кăсăклă пулчĕ:

– «Эпир пĕтетпĕр» тесе йынăшнине илтетĕп те çапла хуравлас килет: пĕр-пĕрне манмасан, тăванла пурăнсан нихăçан та пĕтместпĕр эпир! Акă пирĕн пĕрлĕх 20 çул ĕçлет. Хавшамастпăр эпир. Ачасем чăвашла пĕлеççĕ, юрă юрлаççĕ, чăваш ташшине ташлаççĕ. Эппин, тăван культурăмăра, чĕлхене упраса хăварас тесен ĕçе хамăртан, хамăрăн çемьерен пуçламалла. Таçтан çÿлтен е таçтан аякран пĕр-пĕр пуçлăх темĕн хушасса е ырă сĕнÿ парасса кĕтмелле мар. Эпир пĕрле тата тĕреклĕ пулсан – Конгресс та тĕреклĕ пулать!..

Конгресăн Ваттисен Канашĕн ертÿçин те – **Анатолий Кибеч** çыравçăн тата вĕрентÿçĕн – сĕнÿ сахал мар:

– Халăх хăйĕн шăпи тата чĕлхи пирки хăй мĕн шухăшлать-ши? Çакна пĕлетпĕр-и эпир? «Чĕлхе пĕтсен – халăх пĕтет» тенипех çырлахатпăр-им? Ĕçта пирĕн историксем, чĕлхеçĕсем, этнологсем, социологсем ирттернĕ тарăн та тĕллевлĕ тĕпчевсем? Çук вĕсем. Çĕнĕлле шухăшламалла, паянхи куна витĕр курса ĕçлемелле пирĕн. Культура шайĕ экономика шайĕпе тÿрремĕнех çыхăннине манас марччĕ. Çавăнпа та çухататпăр вĕт çамрăк ăрăва. Чи малтан чăвашлăх сăпкине – яла, Чăваш Енри çĕр çыннине сума кĕртесчĕ. Николай Федоров Президент «Халăхăн авалхи йăли-йĕрки, ăслăлăхпа кăмăлсипет пуянлăхĕ – ялта» тенине асра тытса ĕçлемелле Конгресăн та, правительствăн тÿресен те... Тепĕр шухăш – хамăрăн йăх тымарне, чăваш юнне упраса хăварасси. Шĕвелет çак юн, шĕвелет пирĕн ăрулăх. Мĕн шухăшлаççĕ-ши кун пирки пирĕн психологсемпе генетиксем? Эпир хальлĕхе вĕсен хуравне пĕлместпĕр. Наука, ăслăлăх шайĕнче пурнăçламалла-тăр пирĕн пархатарлă хăш-пĕр тĕллеве. Тĕнчене çĕнĕлле курмалла – кивĕ ăнлавсем паян туллин ĕçлеймеççĕ...

– Анатолий Ильич каланипе килĕшме те пулать, – пуçларĕ сăмахне Хусанти чăвашсен элчи **Ксения Семенова.** – Сывă, ăслă ÿсчĕр пирĕн ачасем, чăваш ĕçне малалла хăюллăн тăсма пултарччăр. Талантлă çын пайтах тухнă чăвашран, татах тухĕç. Тĕп тымарăмăр – чăваш чĕлхи çеç ан пĕттĕр, ан хăртăр. Ан тив, чăвашла та, вырăсла та, тутарла та пĕлччĕр пирĕн ачасем, анчах хăйсем камне, хăш тымартан тухса çĕкленнине кăна ан манччăр. Пĕр-пĕрне кашкăрла кăшлар мар, туссем, паянхи кунпа пĕрлех килес ăрусем çинчен шухăшлар. Тумаллине вăхăтра, çĕкленÿллĕ кăмăлпа пурнăçласан – каллех çĕкленĕпĕр, йышпа 2 миллионран та иртĕпĕр...

Отставкăри генерал-майор **Николай Михайлов** делегатсемпе хăнасене республикăри ĕçпе вăрçă тата çар ветеранĕсен пархатарлă ĕçĕпе паллаштарчĕ. «Патриот туйăмĕ чакни сисĕнет юлашки тапхăрта, – терĕ вăл. – Ку йĕркеллĕ япала мар, мĕншĕн тесен Тăван çĕр-шыва юратни тăван халăха, тăван чĕлхене юратнипе тачă çыхăннă. Çавăнпа пирĕн Конгреспа алла-аллăн ĕçлемелле». Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăваш наци пĕрлĕхĕн ертÿçи **Владимир Сваев** калани те сумлă пулчĕ:

– Эпир хамăрăн чĕлхене упраса хăварас тата аталантарас тĕлĕшпе ĕçленĕ те, ĕçлетпĕр те. Пĕр сĕнÿ çеç, влаç шайĕнчи çыхăнусем çирĕпленсен, официаллă килĕшÿсем тусан пирĕн пĕрлехи ĕç тата вăйлăрах, тата курăмлăрах пуласса çирĕп шанатăп.

ЧНКн иртнĕ çулсенчи ĕç-хĕлне Пушкăртстан чăвашĕсен делегачĕсем те, Самарти «Пехил» пĕрлĕхĕн тата Тюмень облаçĕнчи чăваш наци культура автономийĕн ертÿçисем те тивĕçлипе хакларĕç, хăйсен ĕç-хĕлĕпе паллаштарнă май Конгресăн çĕнĕ йышне ырă сĕнусем пачĕç: «ЧНК статусĕ малашне çирĕп те çÿллĕ пултăрччĕ, – терĕç вĕсем. – Кунсăр пуçне эпир вырăнта ирттерекен «Çăварни», «Акатуй», «Хĕр сăри» уявсене тата ытти уява чăваш артисчĕсемпе музыкçисене, çыравçисене, этнографсемпе чĕлхеçĕсене ытларах явăçтарасчĕ...»

Конгресс делегачĕсем каланине пĕтĕмлетнĕнех янăрарĕ пирĕн чаплă тĕпчевçĕн **Николай Егоров** профессорăн сăмахĕ:

– Чĕлхе тетпĕр, пĕтет тетпĕр... Çакна манас мар, чĕлхе вăл наци культурин пĕр пĕчĕк, анчах çав тери пĕлтерĕшлĕ пайĕ. Ÿнер пирки те çавнах калам, культура тата ÿнер (искусство) уйрăлми пĕрлĕхре пулмалла. Культурăн тепĕр пайĕ – ăслăлăх тĕнчи. Ăçта пирĕн Ăслăлăхсен академийĕ? Çакăн пирки шухăшламалла пирĕн те, ЧНКн та, правительствăра ĕçлекенсен те. Тумалли нумай. Тумаллах...

Чылайăшĕн ячĕ-хушамачĕ кĕреймерĕ çак статья хутлăхне – куншăн каçарсамăр, туссем, кашни япалан чикки пур.

Аслă пуху вĕçленеспе делегатсем – пĕлтерĕшлĕ мĕн пур сĕнĕве кĕртсе – резолюцисем йышăнчĕç. Вĕсемпе «Хыпар» хаçатпа Чăваш наци конгресĕ пĕрле кăларса тăракан «Чăваш тĕнчи» хаçатăн кăçалхи 1-мĕш номерĕнче туллин паллашма пулать.

Юлашки ыйту – ЧНК президентне суйлаcси (унччен, кăшт маларах, Пуху Конгресс ĕçне «çителĕклĕ» паллăпа хакларĕ). Сасăлавра – пĕр кандидат: **Геннадий Николаевич Архипов**. «Мĕншĕн пĕччен? Ăçта альтернативлă кандидат?» – илтĕнчĕç залра сасăсем. Вăхăта сая ямасăр делегатсем ЧНК хастарĕн **Николай Угаслов** пайтаçăн тата **Николай Лукианов** юристăн кандидатурисене тăратрĕç. Николай Федорович Угаслов сĕнупе килĕшмерĕ: «Хатĕр мар эпĕ ку ĕçе», – терĕ. Çакăн хыççăн харпăр хăйсене кандидата **Василий Пушкин** тĕпчевçĕпе **Константин Яковлев** (Тутарстан) тăратрĕç. Ĕлĕкхи пухусенчи евĕрех шăв-шав çĕкленчĕ, ларăва ертсе пыракан ЧНК вице-президентне **Владимир Иванов** профессора хирĕç калани вăй илчĕ. Хĕрсе кайнă делегатсемпе хăнасен шухăш-кăмăлне пирĕн чаплă педагог **Геннадий Волков** академик сăмахĕ çеç виçене-йĕркене лартрĕ пулмалла. «Кам мĕнле те – вăйпа никама та пусахламаççĕ – анчах эпĕ хам Геннадий Николаевичшăн сасăлатăп, – сумлăн пĕлтерчĕ Геннадий Никандрович. – Ку вара эпир иксĕмĕр те аташ пулнипе пĕртте çыхăнман – вăл çак чыса тивĕçлĕ...»

Кашниншĕнех сасăларĕç делегатсем. Асăннă «пăлхавăр» экспромт шайĕнче кăна пулнипех-тĕр, ыттисенчен чылай нумайрах сасă пухса **ЧНК президентне çĕнĕрен Геннадий Архипов суйланчĕ**.

Аслă пуху ĕçне ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ **Михаил Михайловский** тата ЧР культура министрĕ **Роза Лизакова** хутшăнчĕç.

Конгресăн каçхи ларăвĕ пысăк концерта вĕçленчĕ.

Пĕтĕмлетсе çакна калар: Чăваш наци конгресĕн VII Аслă пухăвĕн ĕçне Раççей хутлăхĕнчи 23 регионти тата чикĕ тулашĕнчи 6 çĕр-шывран килнĕ 211 делегатпа 210 хăна хутшăнчĕç.

***

Çав кунах VII Аслă пуху Мăн Канашăн çĕнĕ йышне çирĕплетрĕ. Мăн Канаш Президиумпа вице-президентсене (Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ **В.А. Абрамов**, çак аслă шкулăн профессорĕ **В.А. Иванов**, «Хыпар» Издательство çурчĕн гендиректорĕ-тĕп редакторĕ **А.П. Леонтьев**, «ТУС» строительство пĕрлĕхĕн ертÿçи **Н.Ф. Угаслов**) суйларĕ.

Георгий ИРХИ.
*«Хыпар», 24.03.2009, 55№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔ ИРТНĔ ХЫҪҪĂН КИЛНĔ ШУХĂШ

*Хисеплĕ тусăмсем, ентешĕмсем,*
*Чăваш пулса ҫуралнă этемсем,*
*Эпир – тăван тавралăхăн пĕр шăнăрĕ,*
*Эпир – тăван ҫырулăхăн пĕр кăшăлĕ.*
*Тарăн тымарăн – хулăн вуллисем,*
*Вĕтĕ, шултра – пин тĕрлĕ ҫулҫисем.*
*Пĕр кăшăл-ҫыхă – капăр чечексем,*
*Чечек ҫине анаҫ пыл хурчĕсем,*
*Пыл хурчĕсем – чăваш хĕр-ывăльсем,*
*Пирĕн ĕҫе-хĕле хаклакансем.*
*Йывăҫĕ ҫирĕп пултăр! Пĕр пулар-и?*
*Ҫимĕҫĕ тутă пултăр! Тăрăшар-и?*
*Шăнăр вăйне кисрентерес шутпа*
*Ан аппаланăр халĕ, хăшĕсем.*
*Кăшăл тĕсне тĕксĕмлетес шутпа*
*Ан чармакланăр халĕ, айвансем.*
*Пыл хурчĕсем те чăвашла нăрласшăн,*
*Вĕсем ҫăра, пехетлĕ сим пухасшăн.*
*Мĕн тăвĕҫ-ши эпир сӳнсе ларсан,*
*Мĕн пулĕ-ши эпир тӳнес пулсан?*
*Ама-Ҫĕршыв амаланма мансан,*
*Имшерленсе, ырханланса кайсан,*
*Чăваш хăй чĕлхипе калаҫмасан,*
*Чăваш хăй юррине юрламасан,*
*Чăваш хăй ташшине ташламасан,*
*Чăваш хăй тĕррине тăваймасан,*
*Чăваш хăй сăмахне калаймасан,*
*Чăваш хăй ҫăкăрне касаймасан,*
*Чăваш хăй Ҫĕр-шывне упраймасан*
*Вара – тек ҫуккă эпĕр Ҫĕр ҫинче...*
*Тен, пурлăх юлĕ ҫĕр анлăшĕнче,*
*Тен, асăм юлĕ – Уҫлăх шайĕнче?*
*А-ай, ӳйĕрсе юлĕҫ янкăр юрăсем...*
*Такăнса ӳкĕҫ шухă ташăсем...*
*Ҫĕтĕлсе кайĕҫ капăр тĕрĕсем...*
*Илтĕнми пулĕҫ савăк сăвăсем...*
*Саланса кайĕҫ хаклă сăмахсем...*
*Ишĕлсе анĕҫ юмлă юпасем...*
*Чĕтренсе илĕҫ Улăп тăприсем...*
*Шăпланĕҫ кӳлĕсем, юхан шывсем...*
*Шарламĕҫ типнĕ Атăл хумĕсем...*
*Шăнкăр кăна та шăнкăр ҫăл куҫсем –*
*Чăваш Ҫĕр-шывĕн кĕмĕл кĕслисем,*
*Пирĕн кĕвве ас тăвĕҫ-ши вĕсем?..*
*«Ăҫта, ма курăнмаҫҫĕ чăвашсем?», –*
*Тесе шырайĕҫ-ши пире ҫилсем?..*
*Эпир лартса хăварнă вăрмансем –*
*Пирĕн сасса манайĕҫ-ши вĕсем?..*
*Хамăра хамăр пăчланса ларсан,*
*Хамăра хамăр путланса ларсан*
*Тыр-пул лартса ӳстернĕ уй-хирсем*
*Пулĕҫ Чăвашăн вилĕм тăприсем.*
*Чашкăрса ларĕҫ мăянпа пиҫен,*
*Чалăшшăн кулĕ пирĕнтен вăлтрен.*

*Чăваш пулса ҫуралнă этемсем,*
*Халăх Чĕри ан чарăнтăр тесен*
*Тапас хăватлăн – тĕпсĕр Тымартан,*
*Яваплă, ҫирĕп, ҫӳллĕ кăмăлтан.*

Светлана АСАМАТ.
*«Хыпар», 28.03.2009, 58–59№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН VII АСЛĂ ПУХĂВĔН РЕЗОЛЮЦИЙĔСЕМ

**Халăха упраса хăварасси ҫинчен**

Хальхи глобализаци тапхăрĕнче экономикăпа культура хыҫҫăн халăхсене те пĕр пеклетсе ярас хăрушлăх пурри сисĕнет. Ҫавăнпа та пирĕншĕн паян халăхăмăра упранса юлма пулăшас ĕҫрен пысăкрах пĕлтерĕшли урăх нимĕн те пулма пултараймасть. Ҫакна ăнăҫлă туса пырас тесен:

– хальхи чăваш мĕнле шухăшпа, ĕмĕтпе, тĕллевпе пурăннине тĕплĕн тĕпчесе пĕлмелле, наука пулăшăвне вăйлатмалла;

– халăха упраса тăракан тĕп вăйсенчен пĕри тăван чĕлхе пулнине асра тытса ăна пур майпа та хӳтĕлемелле, ачасене вĕрентессине, унăн обществăри пĕлтерĕшне сарса пымалла;

– чăваш сăпки ялта пулнине шута илсе пĕр яла та арканма памалла мар, ĕҫ вырăнĕсем туса вăхăтлăха тухса кайнисене каялла ҫавăрса килмелле;

– чăваш ҫемйинчи пĕчĕк чăваш телейлĕ ӳстĕр тесен ҫемье прависене анлăлатмалла, патшалăх пулăшăвне пысăклатмалла;

– урă пурнăҫ йĕркине йăлана кĕртемелле, ҫамрăксене спортпа туслаштармалла; ĕҫкĕ чирне пĕтерес ĕҫе психологсене, биологсене, генетиксене явăҫтарса наука пулăшăвне вăйлатмалла;

– культура шайĕпе кăна ĕҫлени ҫителĕксĕр, лайăх аталаннă экономикăсăр халăх пĕрлĕхне тытса пыма ҫук;

– учительсен, журналистсен, ҫыравҫăсен, искусство ҫыннисен халăхăн чун хавалне, тĕнче курăмне ҫĕнĕ шухăшсемпе, сăнарсемпе, идеалсемпе пуянлатассине тĕпе хурса ĕҫлемелле, тăван сăмахпа витĕмлĕрех усă курмалла;

– патшалăхăн халăх пултарулăхĕпе хастарлăхне шанса ĕҫлемелле, халăхпа патшалăх хушшинчи хутшăнусене, ҫыхăнусене вăйлатса пымалла;

– ĕлĕк-авал пĕрле пурăннине шута илсе тус-тăвансене ширанă чух Дунай тăрăхĕнчи пăлхарсене манмалла мар, туслăх кĕперĕ хывмалла;

– халăхăмăра хӳтлĕх паракан вырăн Чăваш Ен пултăр тесен Чăваш наци конгресĕн Правительствăна, Патшалăх Канашне сĕнӳсем тăратассине вăйлатмалла, Президент палăртнă тĕллевсене пурнăҫа кĕртес ĕҫе хастар хутшăнмалла;

– тăван халăхăмăр Раҫҫей шăпишĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине шута илсе Мускава та сĕнӳсемпе тухмалла, унтан пулăшу ыйтма иментсе тăмалла мар. Халăх пуласлăхĕшĕн ĕҫлесси кашнин тивĕҫĕ пултăр!

**Вĕренӳ стандарчĕсенчи наци-регион компоненчĕ ҫинчен**

Наци республикисен хăйсен чĕлхипе культурине аталантармалли майсем пĕчĕкленсех пыраҫҫĕ. Чылай субъект ертӳҫисем, патшалăх органĕсем ҫакăн ҫинчен уҫҫăн каларĕҫ. Чăваш наци конгресĕ те татăклăн хăй сăмахне калать. Сăмах 2007 ҫулхи декабрĕн 1-мĕшĕсенче йышăннă 309-мĕш Федераци саккунĕ ҫинчен пырать. Сиенлĕ ҫак саккуна пула Вĕренӳ стандарчĕсенчен «Наци- регион компоненчĕ» текен ăнлав тухса ӳкет. Ăнлавпа пĕрле наци субъекчĕсем хăйсен чĕлхине, литературине, культурине, историне вĕрентес ирĕке ҫухатаҫҫĕ. Ку халĕччен тунă ҫитĕнӳсенчен каялла чакниех. Раҫҫей Федерацийĕн «Вĕренӳ ҫинчен» тата «Раҫҫей Федерацийĕнчи халăхсен чĕлхисем ҫинчен» саккунĕсене те пăсни пулать. Хамăр республикăри саккунсене те хирĕҫлет ку пулăм.

ЧНК ҫапла сĕнет:

– федерацин ҫӳлерех асăннă саккунне пăрахăҫламалла, мĕншĕн тесен ку тӳррĕмĕн Раҫҫей Федерацийĕн Конституцине пăсниех (68 ст., 3 п.). Конституци тăван чĕлхене сыхласа хăварма тата ăна вĕренме, аталанма майсем туса парать;

– ҫĕнĕ вĕренӳ стандарчĕсенче «Наци-регион компоненчĕ» текен ăнлава тавăрмалла;

– енчен те наци-регион компонентне тавăрмасан ҫĕнĕ вĕренӳ стандарчĕсене республикăра йышăнмалла мар;

– Чăваш Республикин влаҫ органĕсен те ҫак саккуна йышăнмалла марри ҫинчен каламалла;

– шкулсенче наци-регион компоненчĕн сехечĕсене чакарма памалла мар;

– хулари шкулсенче чăваш чĕлхине вĕрентнĕ чух классене пайласа вĕрентмелле;

– 11-мĕш класра чăваш чĕлхипе литературин экзаменне тавăрмалла.

**Реклама ҫинчен**

Чăваш наци конгресĕ ял-хуласенче реклама парас ĕҫре пысăк ҫитменлĕхсем курать. Тăван чĕлхепе реклама пачах ҫук теме те юрать.

ЧНК ҫапла сĕнет:

– чăвашла реклама парас ĕҫе вăйлатмалла;

– патшалăх шайĕпе паракан реклама икĕ чĕлхепе пулмалла;

– уйрăм ҫын е предприяти паракан реклама чăвашла пулсан унăн хакне 50–70% чакармалла.

**Чăваш ҫамрăкĕсен шăпи ҫинчен**

Пуласлăх – ҫамрăксенче. Нацие сыхласа хăварас ĕҫе ҫамрăксене те

хутшăнтармалла. Çакна шута илсе ЧНК çумĕнчи Çамрăксен Канашĕн ĕçне вăйлатмалла. Унта хутшăнакан çамрăксен йышне çĕнетмелле.

ЧНК çапла сĕнет:

Çамрăксен Канашĕн йышне çĕнетес тата çирĕплетес;

– Çамрăксен Канашĕ çинчен Положение çирĕплетес;

– Чăваш чĕлхин кунĕ умĕн «Чăваш ачи, сассуна пар!» темăпа «çавра сĕтел» ирттерес.

2009 çулхи IV кварталта Çамрăксен форумне ирттерес, ăна Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 110 çул çитнине халаллас.

**Топонимика экологийĕ çинчен**

Ял-хуласен ячĕсене вырăсла куçарнисенчен чылайăшĕ тĕрĕс мар. Урам ячĕсем те е кивелнĕ, е паянхи кунпа сыхăнса тăмаççĕ. Чăвашла топонимика ячĕсем çухалса пыраççĕ. Çулсем çинчи кăтартмăшсем, чарăну ячĕсем вырăсла çеç.

ЧНК çапла сĕнет:

– çулсем çинчи кăтартмăшсенче, чарăну ячĕсенче чăвашла вариантсем пулмалла;

– культура объекчĕсен, топонимика вырăнĕсен (çырма, çăл куç, киремет...) паспорчĕсене йĕркелемелле;

– Чăваш Республикин карттине чăвашла ятсене палăртса кăлармалла;

– Раççей Федерацийĕнчи чăвашсем компактлă пурăнакан вырăнсене палăртса карттă тумалла.

**Çĕр-шыври наци политики çинчен**

Эпир – пĕр Федерацире пурăнакан халăхсем. Эпир – Раççей пĕрлĕхĕшĕн. Анчах юлашки вăхăтра хамăр чĕлхене, культурăна хамăр тĕллĕн аталантарма Саккун, Конституци ирĕк панине пăрахăçа кăларма тытăнни сисĕнет. Мускаври хăш-пĕр чиновник чылай чухне наци аталанăвĕ çине сӳрĕккĕн пăхать.

ЧНК çапла шутлать:

– федераци шайĕпе наци политикине вăйлатма ыйтас;

– Раççей Федерацийĕн наци ыйтăвĕпе ĕçлекен уйрăм Министерство кирлĕ;

– саккунсем йышăнакан Федераци Пухăвĕнче национальноçсен ĕçĕпе яваплă уйрăм палата кирлĕ. Унта кашни халăх представителĕ пултăр. СССР саманинче Национальноçсен Канашĕ пулнă. Китайра та 56 халăх представительне тата тĕн конфессийĕсене пĕрлештерсе тăракан Консультаци Канашĕ ĕçлет;

– вырăнти тата сахал йышлă халăх чĕлхисен Европа хартине (1992 çулта Страсбургра йышăннă) Раççей Федерацийĕн ратификацилес ыйтăва хăвăртлатмалла;

– Раççей Федерацийĕн шайĕпе нацисен ыйтăвĕсене татса памалли программа (концепции) кирлĕ. Ăна никĕслесе федерацин уйрăм саккунне йышăнмалла;

– Чăваш Республикин Правительствинче национальноç ĕçĕсемшĕн яваплă Министерство е тивĕçлĕ штатлă пай (отдел) кирлĕ;

– Чăваш Республикинче ятарлă Наци ăслăлăх академийĕ кирлĕ. Ытти халăхăн Чĕлхе е Фольклор институчĕсем пур. Чăваш ăсчахĕсене пĕрлештермелле;

– Наци радио хумне йĕркеленине ырлас. Малашлăхра Наци телекуравĕн хумĕ те ĕçлесе кайтăрччĕ.

**Чăвашсен этнокультурипе этнопедагогики çинчен**

Чăваш халăхĕн авалхăхĕпе ырă йăли-йĕрки, несĕлсен ăс-хакăлĕ, асатте-асаннесем вĕрентсе калани хальхи саманара питĕ пĕлтерĕшлĕ. Çакна шута илсе И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче этнопедагогика институчĕ уçнă (ертӳçи Г.Н. Волков академик). Шел те, шкул-вĕрентӳ ĕçĕнче этнокультура, этнопедагогика пĕлтерĕшне тивĕçлĕ шута илместпĕр-ха.

ЧНК çапла сĕнет:

– ача пахчисенче, шкулсенче несĕлсен ăс-тăнĕн ахахĕсемпе, халăхăн ырă йăлийĕркипе туллин усă курмалла. Ку енĕпе тĕрлĕрен вĕрентӳ урокĕсем ирттермелле, вĕсенче тăван анне, тăван сăмах, тăван чĕлхе пĕлтерĕшĕпе вырăнĕ пирки ытларах калаçу пымалла;

– Чăваш Республикин ятарлă вăтам, аслă вĕренӳ заведенийĕсенче пуринче те вĕренӳ программине этнокультура, этнопедагогика предметне кĕртмелле;

– И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнчи этнопедагогикăн ăслăлăх тĕпчев институчĕн статусне анлăлатмалла. Вăл тĕнчери пĕртен пĕр çавăн пек тĕпчев институчĕ пулнине шута илсе ăна тĕнче, Раççей шайне çĕклемелле, Раççей тата Чăваш Республикин бюджечĕсенче укçа-тенкĕ уйăрас ыйтусене татса памалла.

**Наци вăйĕпе унăн пуласлăхĕ çинчен**

Пирĕн пуласлăх – халăх пĕрлĕхĕнче, кашни чăваш чăваша тăван вырăнне хурса хакланинче. Пĕрне пĕри кунсерен пулăшса тăрсан наци шăпине çăмăллатма май тупăнатех, ĕмĕтсемпе çӳле çĕкленни, тĕлĕксенче вĕçме вĕренни пурнăçланатех. Ниĕмĕрле патша та, Турă та, пуп та пулăшасса шанма кирлĕ мар. Чăваш наци юхăмĕнче пĕрле пиçсе çуннă хастарсен харăс тăрса пĕр юрра юрламалла та пĕр урапа çинче ларса пырса пĕр еннелле каймалла хамăр телее шыраса. И.Я. Яковлев халалне, Н.В. Никольский, Г.Н. Волков, ытти çул пуçăмăрсем вĕрентнине тĕпе хурса наци юхăмĕнче ура хуракан юта питлемелле. Пĕр-пĕрне кӳрентерни е кĕвĕçни пĕтсе пытăр, ытлашшине каçарса, çитменнине çитерсе пурăнар. Чечен чунлă чăвашăн çунатне хуçма çăмăл, çавăнпа та ăна ăшă сăмах каласа хавхалантарасси йăлана кĕтĕр. Чăваш чăвашăн юлташ, хурăнташ пулнине, пĕтĕм чăваш пĕр кăкран тухнине шута илер, каçхине выртсан та, ирхине тăрсан та канăçсăр пĕртен пĕр шухăш шĕкĕлчетĕр пирĕн чĕремĕрсене, çакă çутă тĕнчери чăвашсене пĕрлештерес тĕллевпе ырми-канми ĕçлеме кашни чăваша хăйĕн вырăнĕнче вăй патăр.

**Чăваш наци юхăмĕн хастарĕсен çулне тăсасси çинчен**

Иван Яковлевпа Николай Никольскин çутлăх ĕçĕнчи улăплăхĕ, Çеçпĕл Мишшин «Пирĕн вăй» манифесчĕ, Константин Ивановăн «Вăранăр, тапранăр» йыхравĕ, Аттил империйĕн хăвачĕ, Никита Бичуринăн тухăçра пухнă ăс-тăнĕ, Петĕр Егоровăн чаплă архитектури, Андриян Николаевăн космоса алла илнĕ вăйĕ, Геннадий Волковăн «Тăвалла пулсан та малалла» пилĕ, Василий Николаевăн сĕм авалăхăн парни, ытти çĕр-çĕр чăваш паттăрĕн мăн аслашшĕ-кукашшĕсен, мăн асламăш-кукамăшĕсен тупи, пехилĕ, тилмĕрĕвĕ çӳл тӳпери çăлтăрсемпе, кĕмĕл уйăхпа пĕрле турăшăн-хĕвелшĕн эпир каяс çула уçса пыччăр. Наци мăнаçлăхне хăпартма пире ăрусен хушшинчи тачă çыхăну пулăшĕ, ваттисемпе вăй-питтисен, вĕттисен чăвашлăх туйăмне ӳстерме тăрăшмалла, пархатарлă çак пулăмра аваллăхпа çителĕклĕ усă курни вырăнлă пултăр.

**Наци символĕсен тасалăхне упрасси çинчен**

Чăваш Республикин Мухтав юррине (Гимна) кунсерен радиопа сăмахсăр юрлаттарнине йывăр асапран та, тимĕр сăнчăртан та хăтăлнă чăваш чĕлхине хисеплеменни вырăнне хурас; Республика Гербĕпе илемлетнĕ троллейбуспа е автобуспа çӳремелли билетсене кашни уйăхра пиншерĕн çӳп-сапа пăрахса çунтарса яни – патшалăхран мăшкăллани; Чăваш Республикин Ялавне саккуна пăсса вырнаçтарнăшăн тӳре-шарана явап тыттармалла; Республика Гимнĕн сăмахĕсене вырăсла тата акăлчанла тĕрĕс мар куçарнă текстсене пăрахăçламалла; Шупашкар хулинче урамсен ятне чăвашла тĕрĕс мар çырнăшăн хула администрацине тепĕр хут асăрхаттармалла; хуласемпе ялсен ячĕсене, Шупашкар хулин юхан шыв порчĕн ятне, патшалăхри çуртсем çине чăвашла çырманни пирĕн несĕлсен чĕлхине патшалăх чĕлхи вырăнне хуманнине пĕлтерет, çак çитменлĕхсемшĕн чиновниксене штраф тӳлеттермелле.

**Шупашкар хулине никĕсленĕ куна улăштарасси çинчен**

Çак куна 1469 çулпа çыхăнтарнине пăрахăçлас, мĕншĕн тесен асăннă çул чăвашăн наци туйăмне кӳрентерет, тĕп хулан авалхи мăнаçлăхне мĕскĕнлетет, пирĕн хуламăр ĕлĕк-авалтан хăйĕн илемлĕхĕпе Атăл тăрăхĕнче чи малти ретре тăнине шута илмест, тĕпчевçĕсен вĕрентĕвĕпе килĕшсе тăмасть, чăваш халăхĕн чĕлхипе культурине тата историне аталантарма чăрмантарать, халăха суйма хăнăхтарса тĕрĕслĕх çулне ура хурать, пирĕн хула икĕ ятлă пулнине ăнланма памасть, чăвашсен 1000 çулхи хулине икĕ хутчен çамрăклатни вырăнсăр.

Çапла вара «Шупашкар: 500 çул» парка «Этнопарк» ят пани тĕп-тĕрĕс пулĕ, вăл паркри чăвашсен Асăну юпине тĕп туни – халăха хисеплемменни.

**Республика кунĕ çинчен**

Республика кунне килмешкĕн Раççей регионĕсенче, ытти патшалăхра ĕçлесе пурăнакан чăвашсен делегацийĕсене йыхравлама ыйтас, вĕсене йĕркеллĕ кĕтсе илсе уява наци пĕрлĕхĕн кунĕ вырăнне хурса ирттерме республика, хуласен, районсен администрацийĕсене инçетрен килнĕ чăвашсене çӳлти шайра йышăнма сĕнес. Çеçпĕл вĕрентĕвне – чăвашран пухнă куланай укçине чăвашлăхшăн усă курмаллине – аса илтерес, ыттисемшĕн тăрăшакансем пирĕнсĕрех туп-тулли. Яковлев вĕрентĕвне – «Чăвашлăхшăн тăрăшни ыттисене хирĕç ĕçлени мар» – шута илес те асра тытас. Хамăршăн хамăр тăрăшмасан паянхи укçа ахăр саманинче эпир никама та кирлĕ мар.

**Пĕтĕм чăваш Акатуйне ирттересси çинчен**

Халăх уявне Шупашкарти этнопаркра ирттерес, уява республикăри кашни район тата регионсенчи чăваш наци культура автономийĕсен делегацийĕсене йыхравлас. Акатуй тĕлне «Шупашкар: 500 çул» парка «Этнопарк» ят парас. Авалхи чăвашсен йăлине тĕпе хурасси халăх уявĕн шăнăрĕ пултăр. Шупашкар хула администрацине Чăваш наци конгресĕпе пĕрле Акатуя хатĕрленсе ирттерес ĕçре тăрăшуллă чăваш халăхĕ умĕнчи яваплăха туйса пулăшма ыйтас. Уява Республика кунĕпе çыхăнтарни вырăнлă пулĕ.

**Чăваш наци конгресĕ вырнаçнă Чăваш халăх çуртне тытса тăрасси çинчен**

Çак çурта тытса тăрассине Чăваш Республикипе Шупашкар хула администрацине хăйсем çине илме ыйтас, мĕншĕн тесен ЧНК Вĕрентӳпе Культура министерствисенче ĕçлекенсен тивĕçне чун-хавалĕпе пурнăçласа пырать, укçашăн мар, чăваш халăхне упрас, пĕрлештерес тĕллевпе вăй хурать. Чăваш халăхĕ титуллă пулнăран пирĕн суверенлă республика, унăн хăйĕн Президенчĕ, Ялавĕ, Гимнĕ, Гербĕ, Конституцийĕ, Патшалăх Канашĕ, 21 район пур. Хулари тата ялти хура ĕçе пĕтĕмĕшпе илсен чăваш туса пырать, Республика ятне çӳлти шая хăпартакансем те чăвашсемех. 79 регионти чăваш наци культура автономийĕсен пĕрлĕх çуртне йĕркеллĕ тытса тăрасси тата ăна ЧНК аллине парасси – республика ертӳçисен тивĕçĕ.

*20.03.2009.*

## ЫРӐ ÇУЛ, «КĔМĔЛ САСӐ»!

*Çулсерен чăваш эстрада юррисене шăрантаракансен йышĕ ÿссех пырать. Çапах та вĕсен хушшинче профессионал шайне çитекенни сахал. Чылай чухне ячĕпе хушаматне те ас туса юлаймастăн. Чуна пырса тивекен сасăллă юрăç та сахал мар паллах. Шăпах вĕсене тупса малалла аталанма пулăшас, тĕнчипех саланнă ентешсене пĕр кĕрекене пуçтарас тĕллевпе ЧР Культура министерствипе Чăваш наци Конгресĕ «Кĕмĕл сасă« конкурс-фестиваль йĕркеленĕ те. Кăçал вăл ака уйăхĕн 17–18-мĕшĕсенче 10-мĕш хут иртрĕ. Унта хутшăнма 35 çамрăк юрăç кăмăл тунă. Çирĕн суйлав витĕр 30 юрăç тухнă.*

Фестиваль республикăшăн çеç мар, аякри чăвашсемшĕн те çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ. Конкурса вĕсем çулталăк тăршшĕпех хатĕрленеççĕ. Кăçал Шупашкара Пушкăрт, Тутар республикисенчен, Сарă тупа Самар, Чĕмпĕр облаçĕсенчен, Тюмень хулинчен тата Камчаткăран килнĕ.

Фестиваль икĕ куна тăсăлчĕ терĕмĕр. Пĕрремĕшĕсенче тĕп хулари культура училищин вĕренÿ театрĕн концерт залĕнче ăмăртрăç, иккĕмĕшĕсенче Ухсай Яккăвĕ ячĕллĕ культура керменĕнче гала-концерт иртрĕ.

«Кĕмĕл сасă« режиссерĕ **С.В. Асамат** юрăç-сăвăç çамрăксене хавхалантарсах тăчĕ.

Гала-концерта ЧР Культура министерствин пай пуçлăхĕ **М.Н. Краснов**, ЧНК президенчĕ **Г.Н. Архипов**, Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ **В.Н. Оринов** уçрĕç.

– Паянхи пек пысăк йышпа эпир пĕрремĕш хут 1999 çулта пуçтараннăччĕ. Ун чухне те конкурса хутшăнас текенсем питĕ нумайăнччĕ. Паян çĕнтерейменнисене эпир тепĕр çул хутшăнма сĕнесшĕн. Фестиваль малашне те иртĕ. «Апла тăк ырă çул, «Кĕмĕл сасă»! – терĕ Геннадий Николаевич.

Фестивальте тăхăр çул хушшинче 148 юрăç чыс - мухтава тивĕçнĕ.

Иртнĕ конкурссен çĕнтерÿçисем **С. Печникова**, **А. Московский**, **В. Христофоров** тата вăл ертсе пыракан «Янра, юрă» ушкăн хăйсен ăсталăхне тепĕр хут кăтартрĕç. Çавăн пекех чăваш шăпчăкĕ **Э. Никитина**, **«Янташ»** ушкăн тата ыттисем те конкурса хутшăнакансене саламларĕç.

– Тюменьри чăвашсен «Тăван» ассоциацийĕ пулăшнипе конкурса хутшăнма мехел çитертĕм. Юрă-ташăпа кăсăкланнисĕр пуçне шкулта вырăс чĕлхипе литературине, музыкăпа ÿнер предмечĕсене вĕрентетĕп, – терĕ Çĕпĕртен килнĕ **А. Анисимова**.

Шăмăршă пики **Л. Степанова** фестивале пĕрремĕш хут – «Савăнăç юрри» юрăпа хутшăнчĕ. Халĕччен чăвашла юрламаннине, конкурсантсемпе туслашса кайнине папăртрĕ. «Çĕнтерейменшĕн кулянмастăп. Тепĕр çул та килĕп-ха», - терĕ вăл.

Конкурс çивĕч иртрĕ. Жюри членĕсене чи пултаруллисене палăртма çăмăлах пулмарĕ. Жюри членĕ, Чăваш Республикин халăх артисчĕ **Вячеслав Христофоров** каланă тăрăх – конкурсантсен сассине çеç мар, вĕсен тумне, хăйсене сцена çинче еплерех тыткаланине, юрă пахалăхне те хакланă.

Начар юрăпа инçе каяймăн. Унăн пахалăхĕ сăвăçпа композитортан нумай килет. Кăçал «Чи лайăх сăвăç» тата «Чи лайăх композитор» – **В. Тараватъ**. «Пирĕн пуласлăх» ята Тутарстанран килнĕ **К. Дедушкина** тивĕçрĕ. Шупашкар хĕрĕн **И. Музыкантовăн** юрри куракансене çав тери килĕшрĕ. Тутарстанри **Е. Артемьевăн** тумĕ чи илемли тесе палăртрĕç. Чăваш наци конгресĕн премийĕсене **О. Ананьева** (Етĕрне хули), **В. Захарова** (Пушкăрт Республики) илчĕç. В.Христофоров иртнĕ çулсенчи çĕнтерÿçĕсене **А. Московскипе М. Зайцевăна** ятарлă парне пачĕ. **Э. Ильина** (Элĕк районĕ), **И. Стешко** (Вăрнар районĕ) тата **О. Ласточкина** (Комсомольски районĕ) ятарлă парнесене – тÿлевсĕр аранжировка – тивĕçрĕç.

Виççĕмĕш вырăна **С. Хасанова** (Чĕмпĕр облаçĕ), **И. Стешко**, **О. Шерникова** (Тутар Республики), иккĕмĕш вырăна иккĕн – **С. Салтыковпа** (Саратов облаçĕ) Э. Ильина тухрĕç. Пĕрремĕш вырăна Н.В. Никольский ячĕллĕ педагогика колледжĕн вĕренекенĕ **Д. Пукач** тивĕçрĕ. Гран-прие Саратов хулинчен килнĕ пике **Н. Ермолаева** çĕнсе илчĕ. Ăна медальпе чысларĕç. Унсăр пуçне пур çĕнтерÿçе те чаплă парне парса хавхалантарчĕç.

Наталья Ермолаева хăйĕнпе паллаштарма хаваспах килĕшрĕ:

– Манăн анне – Саратов тăрăхĕнче çуралса уснĕ чăваш. Халĕччен эпĕ вырăсла, акăлчанла, испанла, французла çеç юрланă. Чăвашла – пĕрремĕш хут. Ытларах джаз килĕштеретĕп. «Шупашкар» юррăма шăрантарма хăнăхас тесе пĕр уйăх тăрăшрăм. Сцена çине тухсан юрă сăмахĕсене манса каясран çав тери хăрарăм. Шупашкарта халĕччен пулман эпĕ. Çав тери таса хула. Троллейбусра илнĕ билета çĕр çине пăрахма та иментĕм. Пирĕн патра пулсан... Конкурсра пĕр-пĕрне ура хурас йăла çук иккен кунта.

Денис Пукач çав тери сăпайлă каччă, конкурса вĕсем культура училищинчен иккĕн (Васильевăпа, Елчĕк районĕ) килнĕ. Каччăн «Ан ман эсĕ мана» юррине Л. Иванов сăвăçпа В. Петров композитор хатĕрленĕ.

Сăмахăма Р. Сарпи сăмахĕсемпе О. Кăйкăр кĕвăленĕ «Кĕмĕл сасă» фестиваль гимнĕпе вĕçлес килет.

*Фестиваль, фестиваль,*
*«Кĕмĕл сасă« фестиваль!*
*Юратать сана хула та ял.*
*Фестиваль, фестиваль,*
*«Кĕмĕл сасă« фестиваль!*
*Чĕрене хушатăн эс вăй-хал.*

Татьяна КРАСНОВА.
*«Хыпар», 21.04.2009, 77№.*

## «ПĔРЛЕ ĔÇЛЕР, ПĔРЛЕ КАНАР, ХАМĂРĂН УЯВРА САВĂНАР . . .»

*«Акатуй – сăваплă туй, савăнар, тăван, пĕрле, Акатуй кашни çул килет пĕрре» тесе уçрĕç ертÿçĕсем чăн чăваш уявне – тĕп Акатуя. Вăл ĕнер тĕп хулари «Шупашкар: 500 çул» паркра иртрĕ.*

**Çакнашкал Акатуя Шупашкарта пĕрремĕш хут йĕркелерĕç.** Унта республикăри районсенчи пултарулăх ушкăнĕсем кăна мар, ытти регионти чăваш ансамблĕсем, хăнасем килсе çитрĕç. Акатуй «Алран кайми аки-сухи» юрра – чăваш халăх Гимнне – юрланипе пуçланчĕ. Чăваш тумĕллĕ хĕрарăмсем суха пуç йăтса, каччисем тырă акса, хĕрсем кĕвентепе шыв йăтса утрĕç. Унтан пултарулăх ушкăнĕсенчен тăватшарăн Акатуй сцени çывăхĕнчи «Уяв урапи» çинче ярăнчĕ.

Акă урхамах утланнă пике Акатуй ялавне (сарă ялав çине хĕрлĕпе «Акатуй» тесе çырнă) вăлкĕштерсе килни курăнчĕ. Ялава ЧНК президенчĕ **Геннадий Архипов** йышăнчĕ. Геннадий Николаевич сумлă, пысăк пĕлтерĕшлĕ кунашкал Акатуя тахçанах иртterме ĕмĕтленни пирки, халĕ çав ĕмĕт тинех пурнăçланни пирки каларĕ. Аякри тăвансене (700 яхăн çын) Шупашкара вăхăт тупса килнĕшĕн тав турĕ, пурне те чăвашсен авалтан килекен уявĕ ячĕпе саламларĕ. ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин пай пуçлăхĕ **Михаил Краснов**, ЧНК Ваттисен Канашĕн ертÿçи **Анатолий Кипеч, Микихвер мăчавăр** уява килнисене ăшшăн саламларĕç, Акатуй иртterес йăла-йĕркене ÿлĕм тата вăйлатса пырасси пирки каларĕç.

Сцена çине хăпарнă кашни çын пĕр шухăша – пĕрле ĕçлер, пĕрле канар – палăртрĕ. Куракансене **Олег Залогин** темиçе юрă парнелерĕ. Ун хыççăн пултарулăх ушкăнĕсем пĕрин хыççăн тепри сцена çине хăпарчĕç. Çепĕç, çав вăхăтрах чуна тыткăнлакан юрăсем, хĕрÿ ташăсем... Уйрăмах Пушкăртстанран, Самар облаçĕнчен килнĕ «Шăпчăксен», «Çăл куç», «Улах» фольклор ушкăнĕсен, «Самар Ен» тата Беларусьрен килнĕ ансамбльсен пултарулăхĕ асра юлчĕ.

Унтан вĕсем пурте пĕрле уяв картине тăчĕç, пысăк ункă йĕркелесе юрласа çаврăнчĕç. Çак илеме кашни чăвашăн хăйĕн курмалла, ăна тĕп-тĕрĕс сăнлама сăмахăм та çитес çук.

Унтан асăннă паркра Чăваш халăх юпине уçрĕç, кĕлĕ иртterчĕç, «Уй варринче лаштра юман» юрра юрларĕç.

Уяв уçланкинче кашни районăн «тĕлĕнтермĕшĕсемпе», ал ăстисен пултарулăхĕпе тата ăсталăхĕпе паллашма пулать. Кунтах ал арманĕпе кĕрпе авăртмашкăн хăнăхма, уйран уçлама, пир тĕртме, тĕрĕ тĕрлеме, чăваш наци апатне ас тивме ирĕк параççĕ. Акатуйра çавăн пекех какай шӳрпипе, шашлăкпа, ентешĕмсем вĕретекен техĕмлĕ сăрапа хăналанма май пулчĕ.

Акатуя аякран килнĕ хăнасем епле хакланипе кăсăклантăм.

**Юрий МИХАЙЛОВ, Пушкăртстанри чăваш обществин председателĕ:** Кун пек Акатуя эпир тахçантанпах кĕтнĕ. Питĕ хĕпĕртесе килтĕмĕр. Пушкăрт Республикин тĕрлĕ районĕнчи пултарулăх ушкăнĕсене пухса илсе килтĕмĕр. Эпир хамăр патăмăрта та Акатуй ирттеретпĕр. Ăна тĕрĕс епле йĕркелемеллине тĕплĕ ăнкарасшăн паян. Çитес çул Шупашкара тата ытларах çын илсе килме тăрăшăпăр. Паян Чăваш Енре пурăнакансен наци тумĕпе тĕплĕнрех паллашасшăн. Унти пултарулăх ушкăнĕсен ертӳçисемпе курнăçасшăн.

**Надежда САВЕЛЬЕВА, Самар облаçĕнчи Исаклă районĕнчи «Çăл куç» фольклор ансамблĕн ертӳçи:** Ансамбле 20 çул каяллах йĕркеленĕ. Унта 17 çын çӳрет. Акатуя тăххăрăн килтĕмĕр, уяв питĕ килĕшет. Чĕнсен çулсерен килме хатĕр. Питĕ аван йĕркеленĕ. Кунти чăвашсенчен вĕренмелли нумай. Чăваш тумне сăнарăм: хальхисем ытларах шурă тĕсе, йăлтăр-ялтăра юратни палăрчĕ. Эпир Самар облаçĕнчи чăвашсен авалхи тумĕпе килтĕмĕр. Пир кĕпен виçĕ аркăллă пулмалла. Ăна сарăсемпе, пӳштĕрсемпе илемлетнĕ, енчĕкпе, сăмса тутрипе «пуянлатмалла». Эпир «Чĕмписем» (çырма ячĕ) ятлă ачасен фольклор ушкăнне те йĕркеленĕ. Унта 5–8-мĕш класс ачисем çӳреççĕ. Шел, ачасене шкулта чăвашла вĕрентмеççĕ, килĕсенче те тăван чĕлхепе пуплемеççĕ. Çавăнпа ачасемпе ĕçлеме питĕ йывăр.

**Александр МОИСЕЕВ, Самар облаçĕнчи Кушкă районĕнчи «Малалла» чăваш наци культура обществин председателĕ:** Чăвашсене пĕрлештерекен уяв ку. Ваттисем ĕлĕкхине аса илеççĕ, çамрăксен авалхи йăла-йĕркене вĕренеççĕ. Акатуй йĕркелӳçисене чун-чĕререн тав тăвас килет. Малашне тĕнчери мĕн пур чăваша Шупашкар Акатуйне чĕнмелле пултăр.

**Михаил САВАТНЕЕВ, Камчаткăри «Канаш» ансамбль йĕркелӳçи:** Çакăн пек Акатуйсене çӳресен эпир чăвашсем ăçта тата мĕнле пурăннине пĕлме пуçлатпăр. Пĕр-пĕринпе ытларах çыхăну тытатпăр. Чăвашла калаçайманни тăван чĕлхепе кăсăкланма, ăна вĕренме пуçлĕ.

**Иван ЛЕСНИКОВ, Самар облаçĕнчи Кинел районĕнчи «Шăпчăксем» фольклор ушкăнĕн ертӳçи:** Мĕнле туйăмпа килнĕ тетĕр-и? Питĕ хĕпĕртесе килнĕ. Шупашкара эпир çак туйăмпа кăна çӳретпĕр. Акатуйра хамăрăн пултарулăха кăтартасшăн, мĕн пĕлменнине, çĕннине вĕренесшĕн.

Акатуй спорт вăййисемсĕр иртмерĕ, ухăран та печĕç, алă вăйне те виçрĕç, вĕрен те туртрĕç, футболла та вылярĕç. Ирĕклĕ майпа кĕрешсе Акатуйăн тĕп парнине – така – çĕнсе илчĕç. Унăн хуçи – Канаш районĕнчи Асхва ялĕнче çуралса ӳснĕ Александр Сергеев.

Роза ВЛАСОВА.
*«Хыпар», 25.06.2009, 122№.*

## Чĕререн чĕрене – чӳрече
## ПĔР КУН ТА СИКТЕРМЕСĔР ПУРĂНАР-И?

*Хаклă вулаканăмăр, «Чĕререн чĕрене – чӳрече» ярăма асра тытнăшăн, ăна малашне те йĕркелесе пыма сĕннĕшĕн тавах сана. Çĕнĕ çулта чи малтан Виталий Петрович Никитин «чӳречинчен» шаккатпăр. Чунне уçма, чĕререн калаçма кăмăл тăвĕ-ши? Çапла вара, пирĕн умра – ăсчах, çыравçă, вĕрентӳçĕ, тавра пĕлӳçĕ тата халăх ĕçĕн хастарĕ. Ытларахăшĕ ăна Станьял хушма ятпа пĕлет (тăван ялĕпе аташлă вăл).*

1977–1993 çулсенче Виталий Петрович Чăваш патшалăх университетĕнче вĕрентнĕ – аслă преподаватель, доцент, литература кафедрин пуçлăхĕ. Çав вăхăтрах «Çил çунат» литература пĕрлешĕвне пĕр улшăнмасăр ертсе пынă. Вăл ӳстерсе çунат панă яшсемпе хĕрсем халĕ – ăста учительсем, пичет ĕçченĕсем, çыравçăсемпе тĕпчевçĕсем. Çĕнетӳ пуçлансан Станьял наци юхăмĕн ертӳçисенчен пĕри пулса тăчĕ. Вăл И.Я. Яковлев обществине, Чăваш халăх хуралне, Ваттисен тĕп канашне, Чăваш тавра пĕлӳçисен пĕрлĕхне, Чăваш халăх академине пуçарчĕ. Район ентешлĕхĕсен тĕслĕх уставне çырчĕ. Чăваш наци конгресне йĕркелеме хутшăнчĕ, унăн вице-президенчĕ тата председателĕ пулчĕ.

В.П. Никитин хатĕрленĕ вĕренӳ кĕнекисемпе пин-пин ача чăваш литературине ăша хывать, вăл хавхалантарнипе çĕр-çĕр чăваш тăван тавралăх историйĕпе кăсăкланса кайнă, вун-вун çын кĕнеке кăларма ĕлкĕрчĕ.

Пенси çулне çитиччен унăн пĕр награда кăна пулнă – «Путакана çăлнăшăн» медаль. Ватлăх кунĕсенче Станьял ĕçне тивĕçлипе хакла пуçларĕç: Чăваш Республикин вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн ятне пачĕç, Н. Гарин-Михайловскипе Çеçпĕл Мишши премийĕсемпе чысларĕç, Раççей Федерацийĕн Педагогика ăслăлăхĕсен академийĕн Януш Корчак медалĕпе палăртрĕç.

Поэт калашле: ăна ахаль виçепеле виçеймĕн. Виталий Петрович никам пек те мар. Пултарулăхĕпе çеç мар, кăмăлĕпе те, тыткаларăшĕпе те тĕрлĕрен, тӳлек те – пуçтах та, сăпайлă та – сĕмсĕр те, вашават та – тӳрккес те. Станьял тесен пĕрин кăмăлĕ çĕкленет, хавхалану ӳсет, чунĕ ырăпа тулать. Теприн вара тарăху капланать, кăмăлĕ вĕчĕрхенет, тути те пăрăнса каять. Виталий Петрович никама та лăпкă хăвармасть, хăйĕн хĕмĕпе тивертет-тивертетех. Вăл чĕртнĕ вут нумай-нумай çынра çунать. Станьяла ырлаканни те, ăна хурлаканни те унăн йӳрĕклĕхĕнчен, чун хавалĕнчен, пайталанмасăр тăрăшма пултарнинчен тĕлĕнет.

**– Паспортпа эсĕ кăрлачăн 1-мĕшĕсенче çуралнă. Чăннипе вара кивĕ Çĕн çул кунĕнче çут тĕнчене килнĕ теççĕ. Хăшĕ тĕрĕсрех?**

– Эпĕ хам хăçан çуралнине ас тумастăп çав! Анне каланă тăрăх – мана кивĕ Çĕн çулта çуратнă. Ун чухне ят çыртарасси, хут уйăрасси хальхи пек çирĕп пулман. Çурт-йĕр лартса пĕтерме хăма патне кайма тухнă аттене ял Канашĕн çыруçи Семен Улеев тĕл пулать те çапла ыйтать: «Эсир кĕçĕннин ятне çыртарман вĕт-ха, ял Канашне хăçан пыратăр?» Атте калать: «Эпир сана, Çемен Иванччă, пĕчĕккин хреснашшĕ тăвас тетпĕр. Çавăнпа эсĕ лайăх ят туп та пирĕнсĕрех çырса хур-ха». Пулас хреснатте вара мана çуралнă кун та, ят та тупса панă: Витус. Латинларан куçарсан «пурнăçлăх» е «пурнăç хавалĕ» тенине пĕлтерет. Анчах ял Канашĕн председателĕ ку ята ырламан, вара Виталий тесе çыртарма лекнĕ. Çапах та мана ача чухне ытларах Виттус тесе чĕнетчĕç.

**– Хреснаçупа аçун шăписем пĕрешкел, иккĕшĕ те вăрçăран таврăнайман...**

– Эпĕ çултаlăк çурăра пек чухне вăрçă тапраннă. Салтака тухса каяиччен хреснатте мана хăйĕн сăн ӳкерчĕкне парса хăварнă, ăна халĕ те упратăп. Ун хыçне «На долгую и добрую память Вите. 15 марта 1941 года, когда жил в Каршлыхе. 19 лет» тенĕ. Авланма та ĕлкĕреймен каччă вăрçă вутĕнче пĕтнĕ. Аттене те кĕтсе илеймерĕмĕр...

**– Эсĕ пединститутра вĕреннĕ вăхăтра чăваш уйрăмĕн комсоргĕ пулнă, студентсен 300 çынлă отрядне Казах Республикинчи Павлодар облаçне – çĕн çĕре – тыр-пул пуçтарма ертсе кайнă. Санăн партипе комсомол енĕпе карьера тума, тӳре-шара йышне кĕме май пулнă...**

–ВЛКСМ обкомĕн секретарĕсем мана комсомол ĕçне темиçе хутчен те чĕннĕччĕ, анчах çамрăклăх пичет ĕçĕнчех иртсе кайрĕ, «Çамрăк коммунистра», «Коммунизм ялавĕпе» «Советская Чувашия» хаçатсен пĕрлештернĕ редакцийĕнче ĕçлерĕм. Унтан университетра аспирантурăра вĕрентĕм.

**– Виталий Петрович, санăн «Камсем эпир?» ятлă питĕ паллă сăвă пур:**

*Камсем эпир, мĕнле йăхран эпир?*
*Ăçти тусан пирĕн ӳте хуратнă,*
*Ĕçти шыв-шур пирĕн пите шуратнă,*
*Мĕнле çилпе те хĕвелпе эпир*
*Кăлкан çилхи пек кăмăла вылятнă?*

**«Ăраскал тĕпренчĕкĕ» (2001), «Юрату йĕтесĕ» (2004) кĕнекĕрсем çак сăвăран пуçланаççĕ. Вăл вĕренӳ кĕнекисене те кĕнĕ. Анатолий Смолин вырăсла та куçарнăччĕ пулас ăна. «Программăлла хайлав» мĕнле çуралчĕ-ха?**

–1970 çулхи çурла уйăхĕн чăн вĕçĕнче пулчĕ ку. Эпĕ ун чухне аспирантчĕ. Командировкăна кайрăм. Саранск – Йошкар-Ола – Хусан – Ĕпхӳ маршрутпа çӳрерĕм. Ĕпхӳри архивра документсене шĕкĕлчесе ларнă хыççăн пуйăспа Слакпуç тăрăхне çитрĕм (сул кукринче, пуйăс хăвăртлăхне чакарнă вăхăтра, вакунран сиксе юлтăм). Ял тĕлĕнчен хăпарса сăрт çине канма лартăм. Тин кăна çумăр çуса иртнĕ, улăх çийĕн асамат кĕперĕ карăннă. «Камсем эпир?» сăввăн малтанхи йĕркисем çавăн чухне çуралчĕç.

Кĕçтенттин Ивановăн тăван тавралăхĕпе, музейĕпе паллашрăм – поэтăн Кекен-Васильевкăри йăмăкĕн ывăлĕ Володя Матвеев ертсе çӳрерĕ. Константин Васильевичпа пĕрле вĕреннĕ Кĕкор мучипе курса калаçрăм. «Нарспи» поэмăн çухалнă сыпăкĕ пирки канăçсăрланса шухăшларăм (вăл та, Шупуççыннин «Янтрак янравĕ» поэми пекех, малтан 15 сыпăклă пулнă). Авăн уйăхĕн 1-мĕш кунĕнче «Камсем эпир?» сăвă тăрланчĕ.

Вунă çултан çак хайлав манăн малтанхи кĕнекеме («Ытамлатăн, Çĕршывăм, мана») кĕчĕ. Ун чухнехи идеологи сăлтавĕсене пула хăш-пĕр йĕркине улăштарма тиврĕ. Кĕнеке редакторĕ Валем Ахун хампа килĕшсе татăлсах тӳрлетрĕ.

**– Виталий Петрович, эсĕ чылай вăхăт чăваш пултарулăх çамрăкĕсен кумирĕ пулнă. Юратушăн тĕмсĕлекен студенткăсем санра арçын идеалне шыранă. Юратуллă çырусем те илнĕ пулĕ-ха?**

– Купипех. Çу-ук, шӳтлетĕп! Эпĕ ир авланман, анчах хамăн студенткăсем çине тăван пиччĕшĕ пек, ашшĕ пек пăхнă. Çакна вĕсем те туйнах ĕнтĕ – нихçан та хам вĕрентекен студентка ман пата савнилле çыру çырса курман. Практикăра е экспедицире чухне пĕр-пĕр хĕр сăмах шахвăртни пулкаланă. Эпĕ вара ухмаха переттĕм те сăмаха урăх çĕрелле пăрса ярattăм.

**– Санăн «Юрату йĕтесĕ» кĕнекӳнти сăвăсен пурин те хăйĕн историйĕ пур. «Тăшмана тарăхни» сăвва касмăкра вăрттăн чĕлхепе çырма тивнĕ иккен. Мĕн айăппа лекрĕн-ха «читлĕхе»?**

– 1972 çулхи чӳк уйăхĕнче мана Мĕтри Юман «буржуалла националист» ĕçĕсене пухса тĕпчет тесе ĕçрен кăларса ячĕç, тĕпчев институтне те илмерĕç. Çырса пĕтернĕ диссертаци хӳтĕлес шухăшпа хамăн тăванăмпа Вениамин Пигачевпа (халĕ вăл профессор) Саранск университетĕнчи хӳтĕлев канашне кайса пăхас терĕмĕр. Пуйăс çине ларас чухне пире дружинниксем вокзал çумĕнчи милици уйрăмне сĕтĕрчĕç те кĕчĕç – эсир çав-çав районăн тĕп тухтăрне хĕнесе тăкнă теççĕ. Хăйсем çырса тултарнă хута алă пустарасшăн. Эпĕ вуларăм та урса кайрăм, каллĕ-маллĕ ута-ута хăйсене ятлама пуçларăм. Вениамин Иванович – питĕ тирпейлĕ, тӳлек çын, мана лăплантарать. Эпĕ татах шавлатăп. Тăванăма «эс айăплă мар» тесе кăларса ячĕç, мана кутускăна хупса лартрĕç. Кунта ырри пулас çуккине ăнлантăм та çав сăвва çыртăм, тем сиксе тухас пулсан çул çине пăрахса хăварма шухăшлаттăм. Кĕçех ман тăванăм каялла персе çитрĕ, хăйхи суранланнă тухтăра тупса пычĕ. Лешĕ депутат иккен, хăйсене камсем тапăннине те пĕлет. Вăл милиционерсене тӳрех: «Ку çамрăка эсир ахалех хуптĕрлетĕр», – терĕ. Лешсем каçару ыйтанçи пулса кăларса ячĕç, асăнмалăх сăвă юлчĕ.

**– Эсĕ тĕрлĕ халăх поэчĕсене чылай куçарнă. Калав-очерк çырнă. 1971 çулта «Дружба» альманахра «Когда замолкают роботы» фантастика калавне вулани аса килет. Эсĕ сăвă-калав çеç мар, «шултра жанрпа» та çырнăччĕ мар-и-ха?**

– Сунарçă Миккĕр (Никифор Охотников) çуралнине паллă тума Тутар Республикинчи Аксу тăрăхне кайнăччĕ. Çавăнта кивĕ чиркӳ куртăм, халап каласа пачĕç, ялти чи таса та хитре хĕре çав чиркӳ никĕсне янă пулать. Çак сюжет витĕмĕпе «Киттан мучи» сăвăллă халап çырма пуçларăм. Аппан хĕрачине Ленăна пăхма çӳреме тиветчĕ – вăт çавăн чухне хайлаттăм. Пĕр-ик çула пычĕ ку ĕç...

**– Санăн «Хура хурăнсен сарамачĕ» роман та пур иккен. Ун сыпăкĕсене эсĕ çынсене вуласа та панă. Итлекенсем каласа панă тăрăх, сĕре интереслĕ хайлав. Мĕншĕн пичетлеместĕн вара ăна?**

– Ку роман та, ытти чылай япала та ал çыру шайĕнчен тухаймасăрах кĕл пулчĕç. Инкеклĕ кун ялти çурт çунса кайрĕ те, чуна та çунтарса хăварчĕ – чылай ал çыру, кун кĕнекисем, ача чухнехи сăвăсем пĕтрĕç.

**– Пире тĕрек параканни – кил-йыш. Эсир мăшăрупа икĕ хĕр пăхса ӳстернĕ, пĕри – математик, тепри – философи ăслăлăхĕсен кандидачĕ. Кукаçи те пултăн ĕнтĕ. Сана хавал та хавхалану кӳрекен, санпа пĕр чĕлхе тупма пĕлекен ырă пирĕштипе паллашар-ха.**

– Манăн арăм Зоя Петровна – Елчĕкрен, Судаковсен йăхĕнчен. Биологи вĕрентекен. Анчах шкулта нумай ĕçлеймен, ăна ВЛКСМ Йĕпреç райкомĕн пĕрремĕш секретарьне суйланă. Кайран партин Шупашкар хула комитетĕнче, Чăваш обкомĕнче ĕçлерĕ. Самана улшăнчĕ те – Шупашкар районĕнчи Çӳлтикасси ял вулавăшĕнче ĕçлесе пенсие тухрĕ. Таврара вăл çитмен кил те çук-тăр. Вулакансен конференцийĕсене, Сурхурие, Çăварние, Акатуя, Хравути поххине тата темĕн те пĕре ăста йĕркелесе иттернĕшĕн ăна хисеплĕ ят та панăччĕ.

**– Ялти кӳршĕрсем каланă тăрăх, Зоя Петровна – пахча ăсти, ăста чечекçĕ.**

– Пирĕн пахча – урама тăрăх, 120 метр тăршшĕпех арăм чечек ӳстерет. Çуркунне юр кайсанах çеçке çураççĕ те хытă сивĕсем пуçланиччченех хитреленсе лараççĕ. Арăм та, анне пекех, тирпейлĕхе, çĕр ĕçне, ачасене, çынсене юрататъ. Çынна пулăшу кирлине пĕлсен – çĕрле те, тăвăлта та тухса чупать, хăть чиртен сиплеме, хăть пушар сӳнтерме. Анне ăна «кин те кин» тесе кăна тăратчĕ.

Çамрăк чух анне çирĕп тытатчĕ. Халĕ арăм ăса вĕрентсе «чутлать». Тăратăн вара сĕнксе...

**– Кăрлачăн 15-мĕшĕсенче И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика университетĕнче сан ятпа пысăк конференци, ĕçлĕ уяв пулать. Унта чăваш пуласлăхĕпе хальхи вĕрентӳ меслечĕсем çинчен калаçма палăртнă. Кама-кама чĕнетĕр?**

– Кама чĕнессипе чĕнмесси – йĕркелӳ комитечĕн аллинче. Хамăн вара тахçанхи çамрăк тусăмсемпе – тĕрлĕ экспедицире, практикăра, çĕр улми уйĕнче пĕрле тăрмашнисемпе, ман патра курс е диплом ĕçĕ çырнисемпе, «Çил çунат» литпĕрлешӳ хастарĕсемпе курнăçса калаçас килет. Пурте вĕсем ман чĕре çӳпçинче! Кун-çулĕ мĕнле килнĕ-ши, яш чухне ĕмĕтленни пурнăça кĕнĕ-и, такăнмалли сиксе тухман-и?

Юратнă ĕçĕме пăрахиччен иртнине пĕтĕмлетсе хаклани вырăнлă пуль, мĕн савăнмалли юлнă, мĕншĕн вырханмалли пур. Йăнăшсене тĕрлетме, çылăхсене каçарма ĕлкĕрĕп-и тен.

**– Саккăрмĕш теçеткене мĕнле кăмăлпа пуçлать Станьял?**

– Эпĕ хама сăмах панă – виличчен пĕр кун сиктермесĕр пурăнатăп! Тĕлкĕшни пурнăçа тĕксĕмлетет, йăсăрланни çынна йĕрĕнтерет. Çунас тăк çунас! Сӳниччен пурăнас.

***

Тĕлĕнме пăрахмастăп: хăш-пĕр çын темле кăткăс пулăма та ансат ăнлантарса пама пултарать. Пĕри ак хальхаççăн пирĕн «куçа уçрĕ». Çакăн пек калаçу пулса иртрĕ:

– Станьял феноменĕ халь маншăн паллă. Вăл Пушкин йăхĕнчен!

– Ан тĕлĕнтер! Вырăссен чи чаплă поэчĕпе тăванлă-и?

– Самăй çавăнпа. Ас тăватăр-и: Пушкин Чăваш çĕрĕпе иртнĕ май Стан ялĕнче (Станьялĕнче) çĕр выртнă.

– Пăкачав пирки материал пухса çӳренĕ чухне вăл Стан ялĕнче канма чарăнни паллă-ха (Н. Овчинников картинине те пĕлетпĕр). Утсене улăштарнă та малалла кайнă пулĕ ĕнтĕ.

– Чăваш хĕрне пĕрре курсах юратса пăрахнă хĕрӳллĕ поэт çĕрĕпех лăпкăн сывăрайман. Пушкин юратса пăрахнă, хĕрĕ вара – пăрахман. Вăт çавăнтан Пушкинăн пĕр несĕл турачĕ Станьялĕнче аталанса кайнă!

Ку малтан мана шӳт е анекдот пек çеç туйăнчĕ. Кайран вара Виталий Петровичăн амăшĕ тахçан каласа пани ăша килчĕ:

«Туй хыççăнах Станьялĕнче пĕр кун та тăрас килместчĕ. Çынсем чунсăр та тискер пек туйăнатчĕç. Хăйсем тата хура та пĕчĕккĕ. Мучи

хура, хăйматлăх хура, кўршисем хура – чикансем пек чăрсăр тата! Çеçмерте пирĕн хура тĕслĕ çынни пĕрререн пĕрре çеçчĕ – Хура Таниле мучи, вăл та пулин Станьялсем пек хура марччĕ».

Ăçтан тупăннă-ха чикан пеккисем чăваш ялĕнче? Вара ирĕксĕрех леш калаçăва, хайхи Пушкин «юмаххине» аса илтĕм. Кай-кай-кай, тем те пулĕ çĕр çинче!

Геннадий ДЕГТЯРЕВ.
*«Хыпар», 15.01.2010, 4№.*

## «МАЛАЯ ЖЕРТВА» НА ЗАЯВЛЕНИЕ СПИКЕРА ГОССОВЕТА ОБ «ОСНОВНОМ» ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

*Руководитель аппарата Госсовета Чувашии Анатолий Ухтияров и его заместитель Николай Бакин получили дисциплинарное взыскание за отсутствие синхронного перевода выступления на чувашском языке на внеочередной тридцать восьмой сессии парламента 28 апреля. Ухтиярову объявлен выговор, Бакину – замечание.*

Как передает корреспондент ИА REGNUM, соответствующее распоряжение, опубликованное 11 мая, председатель Госсовета республики Михаил Михайловский подписал 29 апреля, на следующий день после сессии, на которой спикер сделал скандальное заявление о том, что «основной язык в республике – чувашский, а потом идет уже русский». Кроме того, руководителю аппарата поручено «провести организационно-технические меры по обеспечению выступлений на заседаниях Государственного Совета Чувашской Республики в случае необходимости синхронным переводом на государственные языки».

Как ранее сообщало ИА REGNUM, скандальному заявлению спикера Госсовета и главного единоросса Чувашии Михаила Михайловского предшествовало эмоциональное и довольно длительное выступление руководителя Чувашского национального конгресса Геннадия Архипова, прозвучавшее на чувашском языке, на которое отреагировал депутат Игорь Моляков, рекомендовавший в будущем предусмотреть синхронный перевод, поскольку не все знают чувашский. Михайловский на это сказал следующее: «И хорошо. Но мы хотим поддержать в этой части Геннадия Николаевича Архипова. Если мы проживаем на территории Чувашской Республики, где у нас присутствуют два языка, надо по крайней мере знать основной язык республики – это чувашский, а потом идет уже русский. Предложение принимается. Это замечание с моей стороны – как председателя Государственного совета и по национальности чуваша. А то у нас разные мнения существуют... я не хочу об этом говорить, но Чувашская Республика небольшая она, но, по крайней мере, некоторые вещи надо знать... на коренном. Я не националист, но хотелось бы этого».

Распоряжение председателя – безусловно, важная мера, которая учитывает даже то, что в «случае необходимости» можно рассчитывать на обеспечение синхронного перевода чувашской речи на русский язык и наоборот: русской речи на чувашский язык. Однако данное распоряжение больше напоминает неловкую попытку исчерпать злополучный инцидент малой жертвой: действительно, есть же наказанные. Вместе с тем стоит отметить, что не отсутствие синхронного перевода выступления главы нацконгресса, который почти всегда выступает на чувашском языке и без последствий, а именно заявление второго лица республики – спикера парламента, а также главного единоросса Михаила Михайловского вызвало общественный резонанс в национальной республике, которую на самом высшем уровне называют оплотом межнациональной и межконфессиональной стабильности и мира. Именно на антиконституционные заявления спикера отреагировали правозащитники, региональные лидеры КПРФ и «Справедливой России», потребовавшие от Михайловского дезавуировать сказанное и считающие, что подобное заявление заслуживает порицания президента Чувашии. Администрация президента Чувашии действительно отреагировала, сделав робкие попытки объяснить, что «имел в виду» Михайловский. Сам Михаил Михайловский не стал публично объясняться. Но пояснения последовали.

Руководитель Чувашского национального конгресса (ЧНК) Геннадий Архипов, косвенно послуживший первопричиной политического скандала, распространил заявление Президиума общественной организации под заголовком «Не шовинизм ли это?».

<...>

ИА REGNUM приводит заявление Президиума ЧНК полностью.

«Снова толерантную и спокойную республику переполошили. В этот раз ИА REGNUM. Речь идет о комментарии, который прозвучал на заседании Госсовета 28 апреля. Это агентство уже не в первый раз распространяет неправдоподобные сведения о языке и нынешних руководителях Чувашской Республики. Комментарии агентства нас – народ, проживающий на протяжении веков на своей земле и говорящий на родном языке, оскорбляют: оказывается, нам и на улице, и в государственных органах разговаривать по-чувашски нельзя. Видимо, некоторым снова не дает покоя синдром «старшего брата». В.И. Ленин про дела таковых говорил: «Великодержавный шовинизм». Это и получается разжигание межнациональной розни, о котором говорится в УК РФ. Агентство (официально зарегистрированное!) использование на Госсовете Президента ЧНК Г.Н.Архипова и Председателя М.А.Михайловского одного из государственных языков приводит как шокирующий факт. Руководитель правозащитной организацин «Щит и меч» и вовсе в этом видит мотивы преступления. Абсурд. Под конец без какой-либо причины задели и Президента ЧР: оказывается, в республике сейчас «зарождается национализм». Удивительная неправда, ложь, выдумка, высосанный из пальца вывод. Эти мысли развил «МК в Чебоксарах» (в 19 номере майского выпуска).

На самом деле спикер Госсовета М.А. Михайловский лишь напомнил тем, кто кричал с места, Конституцию ЧР. В документе сказано: государственные языки (внимание! изначально упомянут этот язык) – чувашский язык и (внимание! его по очереди упомянули вторым) русский язык. А спикер только перечислил языки один за другим. Поэтому то, что агентство и руководитель правозащитной организации усмотрели в этом случае преступление, похоже всего лишь на поиск иголки в стоге сена. С другой стороны, проведение заседаний Госсовета на русском языке мы, чуваши, можем воспринять как неуважение к нам. Почему нет синхронного перевода? В Государственном Совете синхронный перевод должен быть. Почему официальные документы все меньше и меньше пишут на чувашском языке? Это получается – дискриминация чувашского языка!

Президиум ЧНК предостерегает: подобные агентства могут разрушить дружбу народов, проживающих в республике, и их спокойствие. Мы критикуем дело подобных журналистов и правозащитников и не принимаем то, что они пытаются посеять вражду между властью и народом..

Республиканская власть, в первую очередь, ответственна за чувашский народ. Сохранение его языка и культуры делает только честь власти, укрепляет Российскую Федерацию. Президент РФ Д.А. Медведев подчеркивал, что богатство России в многонациональности. Нам бы всем не помешало взять это на заметку. ЧНК подобные «комментарии» и обращения в органы безопасности осуждает, обещает достойно и законными способами дать отпор».

*ИА «Регнум».17.05.2011.*

## МНОГО ШУМА ИЗ НИЧЕГО, ИЛИ ПОЧЕМУ ЧУВАШАМ ТАК НЕУЮТНО В СВОЕМ ДОМЕ?

Никчемный шум-гам, поднятый после моего выступления на сессии Госсовета ЧР некоторыми СМИ, открыто показал, насколько мы, чуваши, позволяем издеваться над собой, над нашей культурой, нашим родным языком. Прямо на глазах чувашский язык изымают со всех сфер нашей жизнедеятельности. Нас сталкивают лбами, подкупают предателей, не гнушаясь ничем, тихо посмеиваясь и потирая руки над тем, что не отвечаем их грязными методами. Доброта, толерантность чувашского

народа к другим нациям – многие пришлые воспринимают это так, как будто так и положено, забывая о том, что все в этом мире должно быть взаимно. **Мы терпим и то, что на каждом шагу нам говорят: «Говорите на нормальном языке». Это в республике, где проживает 67% титульного населения. Наши руководители, те же чуваши, не прочь каленым железом уничтожать «национализм», которого фактически нет и не было. Тем самым предавая свой народ, свою культуру, – и это все в порядке вещей.**

За любовь к родному народу пострадали лучшие представители чувашской интеллигенции. Народный поэт Митта Васьлей 17 лет сидел за решеткой. Да что Митта, даже Петра Хузангая судили! А таких было сотни и сотни, тем самым выдавливали из народа любовь к своему, родному, уничтожая цвет нашей интеллигенции. Нам вдалбливали в голову, что чувашский язык нужен только до Канаша. Из двух государственных языков фактически признается только один. По мнению «государственников», чувашскому языку место только у порога. Это прямое нарушение Конституции ЧР. Сам народ потихоньку в своей родной республике занимает место гастарбайтера. 80% руководителей предприятий и организаций – лица не титульной нации. И это никого не волнует. Дошли до того, что руководителем национального радио и телевидения назначают человека, не владеющего чувашским языком. Разве могут татары, марийцы, башкиры допустить такого? Или чтобы художественной школой, институтом культуры, национальным театром, музыкальным училищем и т.д. в национальной республике руководили люди, далекие от чувашской культуры и не понимающие язык титульной нации? И поэтому некоторые нагло, не стесняясь, спрашивают, зачем вообще надо было давать слово президенту Конгресса на сессии Госсовета? Выгнать, мол, его надо было и ничего не случилось бы, и ни один чуваш не заступился бы за него. Какая беспардонность и наглость! Мы можем терпеть до поры до времени. А терпение, как известно, бесконечным не бывает. Сегодня плохо, что нет чувашского национализма, а национализм в хорошем смысле слова (т.е. любовь своему народу, своей культуре, языку) должен быть. По большому счету мы сами, чуваши, предаем себя. Единственный раз чиновник такого ранга, как председатель Госсовета М. Михайловский, поддерживая мое выступление, сказал, что для чувашей чувашский язык должен быть первым, а потом уже – русский. Разве он не прав? Конечно, прав! А какую бузу подняли против М. Михайловского некоторые СМИ, которым все чувашское противно. Они настолько обнаглели, что готовы судить его за это и не боятся об этом заявить открыто. Это же вызов всему чувашскому народу! Это шовинизм по отношению ко всему чувашскому, и это все мы терпим! Ни одного отклика в поддержку! Вот итоги нашей толерантности. Нам не нужен чувашский национализм, но и шовинизм по отношению к чувашам нам противен, поэтому мы не должны этого допустить. А у нас он на каждом шагу. Где паритет обучения языков в школах? Куда исчез родной язык в Администрации Президента, стенах Государственного Совета, министерствах? Как можно уважать тех руководителей, которые не владеют языком титульной нации или хотя бы не признают общающихся или обращающихся на этом древнем языке? Неужели невозможно принять к себе на работу секретарей, владеющих государственными языками.

Надо честно признать: наш народ стоит перед угрозой исчезновения, и с этим надо что-то делать. Народ, который имеет такую богатую историю, должен найти силы объединиться за свое будущее, «отвоевать» те позиции, которые мы, возможно, бесповоротно потеряли. Из наших душ выхолащивают все родное, чувство любви к своему языку, народу. Практически мы сами согласились быть манкуртами, не помнящими своих матерей, дедов, предков. Забыли о том, что мы должны быть продолжателями славных традиций своего народа. Наши власти и пальцем не пошевельнули, когда уже в наши дни открыто крадут наше богатое булгарское наследство, изучение которого должно было быть основой воспитания чувашской молодежи со школьной скамьи. Как можно опуститься до этого, что у чувашского народа нет главного режиссера, владеющего родным языком, для проведения чувашского праздника «Акатуй» в Ульяновске? Все чуваши России проводят этот весенний праздник, продолжая вековые традиции своего народа. А чуваши в нашей родной республике не могут проводить общереспубликанский «Акатуй», где бы все чуваши радовались, что они чуваши. День республики, который в свое время был задуман как главный праздник чувашского народа, заполнили аморфным содержанием – ничего общего с традициями чувашского народа он не имеет.

**Да, проще всего критиковать деятельность Чувашского национального конгресса, но мы никогда не были соглашателями, предателями. Если каждый чуваш или другие общественные организации могли бы сделать хоть столько, сколько делает сегодня Чувашский национальный конгресс, то сильнее нашего народа не было бы.** А критику, обоснованную, мы воспринимаем и никого не запрещаем влиться в наши ряды. Общеизвестно, что критикуют тех, кто что-то делает. Значит, это добрый знак. Значит, мы что-то делаем, если кого-то это так задевает.

Чӑвашсем, вӑранӑр!
Пӗрле пулар!
Пӗрлӗхре вӑй!

Г.Н. Архипов,
президент ЧНК.
*«Чӑваш тӗнчи», 2011. 20–21№.*

## «АБРАМОВ ҪУККИ ТӲРЕХ СИСӖНЕТ ТЕҪҪӖ» (тӑхӑр кунӗ тӗлне)

*Валентин Абрамовпа Чӑваш наци конгресӗн ҫивӗч ыйтӑвӗсем тавра тем чухлех калаҫма пулатчӗ-тӗр. ЧНК вице-президенчӗ-ҫке вӑл. Ҫак тивӗҫе пурнӑҫласа пыракана мӗнле чӗнни пиркиех йӗкӗлтешме пулать мар-и? Тепӗр тесен – ЧНК халӑх кӗтнӗ чӑн-чӑн хӑват пулса тӑрайманни пӗр ҫынран ҫеҫ килмест. Валентин Александровичӑн тӗп ӗҫӗ – студентсене вӗрентесси, Чӑваш патшалӑх университечӗн доценчӗ вӑл.*

**– Тен, йӑнӑшма та пултаратӑп, анчах та эсир пач та кӳренме пӗлмен ҫын пек туйӑнатӑр.**

– Кӳренӳ нумаях пымасть манан – ӑшра вӑл. Ҫиелтине кӑтартмастӑп, мӗншӗн тесен эпӗ – Скорпион. Ҫеҫпӗл те ман пекех чӳк уйӑхӗнче ҫуралнӑ. Эпӗ йӑлтах ӑша илетӗп, пӑшӑрханӑва шалта, ҫынна палӑртмасӑр ирттерсе яратӑп. Хытӑ пырса тивсен кӑна ӑшри ҫиеле тухма пултарать. Анчах та такама кӳрентерес тесе мар, пӑсне кӑларса ярас килменнипе. Юлашки вӑхӑтра анлӑ сарӑлнӑ сӑмахпа каласан эпӗ – толерантлӑ ҫын.

**– Ку сӑмахпа ҫыхӑннӑ шӳтле япала та илтнӗ. Пӗр корреспондент ӑна йӑнӑш ҫырнӑ та – хаҫатра ҫавӑн пекех пичетленӗ. Редактор ятлаҫать тет: «Мӗнле айванла йӑнӑшсем яратӑр! Намӑс та мар-и?» Лешӗ хирӗҫлет: «Ку сӑмах пӗлтерӗшне эпӗ пач та ӑнланмастӑп, пресс-конференцире пӗрремӗш хут илтрӗм...» Ҫавӑнпа та ӑна чӑвашла куҫарса «чӑмласа» парӑр-ха...**

– Куҫарма пултарнӑ: чӑтӑмлӑх, урӑх ҫын шухӑшне йышӑнса ӑнланма тӑрӑшни.

**– Ҫапла пулма сире пурнӑҫ вӗрентрӗ-и е мӗн ҫуралнӑранпах ҫавӑн пек-и эсир?**

– Эпӗ ҫут ҫанталӑка питӗ юрататӑп, Канаш районӗнчи Кӑшнаруйра атте-анне кил-ҫурчӗ. Унта ҫитсен тӳрех, пӳрте кӗмесӗрех, пахчана тухса каятӑп, йӑрансем, курӑксем ӑҫта ҫити ӳснине пӑхатӑп, ҫут ҫанталӑкра чӳхенсе лӑпланатӑп, тасалатӑп, хама хумхантаракан ыйтусене татса паратӑп. Ку юрату ачаранах пырать. Тепӗр чухне пӗчченлӗхе кӗрсе ӳкни те пулать. Ҫын хушшинче пулма, шӳтлеме-кулма, калаҫма юрататӑп. «Ахӑлтатса кулнӑ чух ҫирӗп ҫын ку темелле» йӗркесене ман ҫинченех ҫырнӑн туйӑнать. Шӳтлесен кӑмӑл ҫӗкленет, ҫавӑнпах-тӑр мана «компани чунӗ» теҫҫӗ. Хама мухтанӑ пек пулать те – анчах та ӗҫтешсем пӗр-пӗр уявра Абрамов ҫукки тӳрех сисӗнет теҫҫӗ.

**– Абрамов тенӗрен – пирӗн вӑхӑтри студентсем те сире ҫаплах чӗнетчӗҫ. Янравлӑ хушаматӑр ӑҫтан тухнипе интересленмен-и?**

– Пирӗн йӑхра Упрам пулнӑ пулмалла. Ӗлӗкхи саманара чӑваш ячӗсене вырӑсла янраттарса ҫырнӑ та – ҫапла вара Упрамран Абрамов пулса тӑнӑ. Хушма ят пек усӑ куратӑп-ха унпа, вылянкаласа ҫырнӑ чухне хама Вали Умрам тетӗп.

**– Вылянкаласа тени мӗнлерех ҫырни вӑл?**

– Гаврил Кореньковӑн вылянкаласа ҫырнӑ сӑвӑ-поэма нумай пулнӑ. «Атя, юрӗ хам валли», – тесе палӑртса хӑварнӑ вӗсене. Хам валли ҫырман-ха эпӗ. Юлташсенчен шӳтлесе тӑрӑхланӑ самантсемпе усӑ курни кӑна.

**– Валентин Александрович, сирӗн шухӑшӑрпа – хӑҫан вылятпӑр эпир, хӑҫан чӑннипех те пурӑнатпар?**

– Икӗ постулата тӗпе хуратӑп. Пӗрремӗшӗ: пурнӑҫ вӑл – театр; тепри: пурнӑҫ – вӑйӑ. Пӗлтерӗшӗсем ҫывӑх, анчах уйрӑмлӑхӗ те пур. Театр – чиновник патне кайсан. Унта роль выляма тивет. Вӑйӑ – кирек ӑҫта та. Шкул ачисен е студентсен хушшинче. Вӑйӑ вылянӑран шухӑшӑма калама та ҫӑмӑлрах. Тен, тепӗр чухне нормӑран та тухса каятӑн пуль. «Валентин Александрович, ытла хӑюллӑ каларӑр», – текенсем те пулаҫҫӗ е вӑтанса каяҫҫӗ. Теприсем питӗ черченкӗ, ӑна-кӑна ӑнлансах ҫитерейменҫҫӗ. Ку культура шайӗпе те ҫыханнӑ. Шӳт, тӑрӑхласа куласси авалтан килекен йӑла, ӑна ӑнланма пысӑк ӑсталӑх кирлӗ.

**– Анчах та пурнӑҫ шӳт-кулӑран кӑна тӑмасть-ҫке. Кирек камӑн кунҫулӗнче те явапллӑ самантсем пулаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, туй. Пӗркенчӗк айӗнчи хӗр хӑйӗн каччине мӗнле кӗтнине пӗлетӗп-ха. Анчах та йӗкӗт чунӗнче мӗнле туйӑмсем-ши? Хӗр илме каять-ҫке-ха вӑл! Ӗмӗрлӗхе! Пурнӑҫӑрти ҫав саманта ас тӑватӑр-и?**

– Икӗ самант пирки тӳрех калама пултаратӑп. Хӑв килӗштернӗ ҫынна пӗрремӗш хут курни... Хӑйне евӗр кисренӳ, юн вӗриленни... Ҫав вӑхӑтрах иккӗленни: тен, эпӗ ӑна тивӗҫ мар тени. Тепри – варринчи хутшӑнусене сиктерсе хӑварса – уйрӑлма тивнӗ самант.

**– Уйрӑлма... Мӗншӗн – уйрӑлма?**

– Юратнӑ ҫынпа уйрӑлас хӑрушлӑх та пур. Малтан юратса пӑрахнӑ, анчах вӗҫӗнче уйрӑлма тивни. Ҫеҫпӗл Мишшин «Выдуманным глазом» вырӑсла ҫырнӑ сӑвви пур. Юратура ҫӑлӑнӑҫ тупайман лирика геройӗ хире тухса каять... Пурнӑҫра ун пек самант такамӑн та пулать. Ӑша илетпӗр тени – шӑп та лӑп ҫавӑ.

**– Апла пулсан юратнӑ чух кӑна ҫын вылямасть.**

– Ӑша илнӗ самант – эпӗ хама хам ӑнланни, асапланни. Ҫулне шырамалла-и, хама каҫармалла-и е каҫару ыйтмалла-и... Кӑна ӑнлантарса пама эпӗ психолог мар.

**– Мӗнле – психолог мар? Эсир вӗрентекен-ҫке, университет преподавателӗ...**

– Эпӗ хамшӑн психолог мар. Ытти сен психологине ӑнланма пултаратӑп. Вӗрентекен тени мана ҫывӑхрах. Педагог сӑмах килӗшмест. Вӑл наука мар – искусство. Ҫавӑнпа кашниех хӑйӗн мелӗпе ӗҫлет. Темшӗн педагог тенине воспитанипе ҫыхӑнтараҫҫӗ. Эпӗ вара вӗрентме, пӗлӳ пама тӑрӑшатӑп. Пӗлӳ, ӑс урлӑ воспитани те пулать. Капла юрамасть, апла ан ту тесе тӳрремӗн нихӑҫан та каламан. Уйрӑмах литература вӗрентнӗ чух. Вӑл хӑех воспитани функцине туса пырать.

**– «Пирӗн литература шкулӗ пурнӑҫран ҫав тери аякка тӑрса юлнӑ», – вуларӑм ҫак кунсенче пичетленсе тухнӑ пӗр кӗнеке ум сӑмахӗнче. Ҫак шухӑшпа килӗшетӗр-и?**

– «Литература шкулӗ» термин хӑй питӗ ӑнӑҫсӑр. Енчен те эпир литературӑна хӑйне мӗнле ҫырмаллине вӗрентесшӗн пулсан – ку йӗркеллӗ япала мар. Совет саманинче пулнӑ ун пекки – апла ҫырмалла, капла ҫырмалла тени. Хальхи вӑхӑтра та ҫапла пулас тӑк ним ырри те ҫук. Критика мар, тен, литература хӑй кая юлса пырать? Тен, вуламалли нимӗн те ҫырман. Ӑҫта пирӗн Илпексем, Уярсем? Литература чун ҫӑкӑрӗ пулма пӑрахрӗ. Самани ҫапла.

**– Студентсем мӗн вулаҫҫӗ?**

– Вӗсем вулама юратмаҫҫӗ. Интернетра чакаланаҫҫӗ е «Дом-2» пӑхаҫҫӗ. Хаҫат вуламанни те сисӗнет. Пӗррехинче 100 студентпа лекци вӑхӑтӗнче ыйтӑм ирттертӗм: «Мӗнле хаҫат вулатӑр?» Иккӗшӗ-виҫҫӗшӗ – «Тантӑш», ҫавӑн чухлех «Киҫ-ҫурт, хушма хуҫалӑх» тесе палӑртнӑ. Ҫитменнине скобкӑра кӑтартни те пур – «Атте-анне патне яла кайсан». Чӑваш вулаканне ҫухатса пыратпӑр.

**– Юлашки вӑхӑтра хӑвӑр мӗн ҫӗннине алран ямасӑр шӗкӗлчерӗр?**

– Ку – чи йывӑр ыйту. Мӗншӗн тесен вӑхӑт хӗсӗкки тӳрех пуҫласа вӗҫне ҫитиччен вуласа тухма чӑрмантарать. Тепӗр чухне халӑх поэчӗ е писателӗ ятне илнисенне пуҫламӑш предложение куҫ ывӑтсанах малаллине вулас шухӑш сӗврӗлӗт. Ҫавӑнпа тӑтӑшах чӑваш литературин классики патне таврӑнма тивет. Ун чух ӑна хальхипе танлаштарма ҫукки сисӗнет.

**– Чун вилӗмсӗрлӗхне ӗненетӗр-и?**

– Авалхи египтянсем те, индуссем те чун вилӗмсӗрлӗхне, вӑл куҫма пултарнине вӗрентсе калаНӑ. Эпӗ те ун пирки шухӑша каятӑп. Тӑвас утӑмсем те ҫавӑнпа ҫыхӑннӑ. Мӗнле ят юлать? Мӗн калӗҫ ман ҫинчен? Ҫапах та хама ытлашшипех рамкӑна кӗртсе лартмастӑп. Ҫӗр ҫинчи пурнӑҫ та илемлӗ, тӗрлӗ енлӗ, унпа та савӑнма пӗлмелле. Хайне евӗрлӗ виҫе-тараса пулмалла.

**– Мӗн йӗрӗнтерет сире ҫак пурнӑҫра?**

– Эсӗ ырӑ тунине ӑнланманни.

**– Мӗн савӑнтарать?**

– Ырӑ самантсем.

**– Мӗн тӑваяс ҫук?**

– Ҫынна вӑлерееc ҫук. Хам пурнӑҫра выльӑх та пусса курман.

**– Чӑх та-и?**

– Чӑх та.

**– Саламлатӑп.**

– Хӑрани мар ку – манӑн психологи, чӗр чун ҫине ҫавӑн пек пӑхни.

**– Хӗрарӑмӑн мӗн тума юрамасть?**

– Енчен те арҫын стена купалать пулсан, хӗрарӑм пӗр-ик кирпӗчне илсенех вӑл ишӗлсе анать. Авалхи Египет ҫынни Птаххотеп каланӑ ку шухӑша. Эпӗ те килӗшетӗп унпа. Хӗрарӑмӑн каҫарма пӗлмелле. Вӑл каҫарма пӗлменни арҫын купаланӑ стенаран кирпӗч кӑларнипе танах...

Римма ПРОКОПЬЕВА.
*«Хыпар», 14.06.2012, 109–110№.*

## СИРӖН ЯТПА КӐЛАРАКАН СТРАНИЦА

*Ҫитес уйӑхра Чӑваш наци конгресне йӗркеленӗренпе 20 ҫул ҫитет. Иртнӗ ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсен пуҫламӑшӗ халӑхӑн хастарлӑхӗпе, чӑвашлӑх чӗрӗлӗхӗпе палӑрса юлчӗ. Ҫак пулӑмсем пулӑшнӑ та ЧНКна «чун» пама.*

Конгресс кун ҫути курсанах хӑйӗн ҫитес вӑхӑтра пурнӑҫламалли тӗллевӗсене палӑртнӑччӗ. Ҫав шутра пӗтӗм чӑваша ҫыхӑнтарма май паракан кӑларӑм йӗркелес ыйту та пурччӗ, шел те, унашкалли пулаймарӗ. Вара туса ҫитереймен ҫак ӗҫе «Хыпар» хаҫат пурнӑҫлама пуҫларӗ: 1998 ҫулхи кӑрлачӑн 31-мӗшӗсенче «Чӑваш тӗнчи» страница тухма тытӑнчӗ. Унтанпа кӗҫех 15 ҫул ҫитет. Пӗлтерӗшлӗ ҫак пулӑмпа йӑхташӑмӑрсене Чӑваш Республикин пӗрремӗш Президенчӗ Николай Федоров та саламланӑччӗ: «...Чӑвашлӑх вӑл – чӑн малтан халӑхӑмӑршӑн, унӑн пуласлӑхӗшӗн тӑрӑшни. Пӗр-пӗрин вӑй-хӑватне туйса тӑни темрен те хаклӑ... Пирӗн чӗлхе, йӑла-йӗрке, тащӑюрӑ эпир чи авалхи халӑхсенчен пӗри пулнине ҫирӗплетеҫҫӗ. Тӗрлӗ ҫӗрте пурӑнакан тӑванӑмӑрсем хӑйсен чи лайӑх енӗсемпе – тараватлӑхӗпе, сӑпайлӑхӗпе, ӗҫченлӗхӗпе – сыхланса-упранса юлнӑ. Чӑваш Ен «картинчен» тухса инҫете-инҫете сарӑлнӑ, тӗнче тӑрӑх сапаланнӑ йӑхташӑмӑрсене пӗр чӑмӑра пӗрлештерекенӗ, тӑванлӑх туйӑмне ҫӗнӗ хӑватпа аталантарса яма пулӑшаканӗ ҫак кӑларӑм пуласса шанатӑп», – тенӗччӗ вӑл хӑйӗн саламӗнче.

Унтанпа 150 хута яхӑн тухрӗ «Чӑваш тӗнчи» кӑларӑм чӑваш халӑх хаҫатӗнче.

Чăваш тĕнчи анлă, ăçта кăна сапаланса кайман-ши йăхташăмăрсем? Эстонире е Казахстанра, Тутарстанра е Пушкăртстанра, Чĕмпĕрте е Самарта, Одессăра е Мускавра... тымар янă – вĕсене çыхăнтарма, çакскерсен кун-çулĕ, шăпи пирки каласа пама тĕв тытнă та «Чăваш тĕнчи».

Тăванăмăрсен йыхравĕпе ăçта кăна çитмерĕмĕр-ши çак тапхăрта? Мускав, Хусан, Чĕмпĕр, Пенза, Самар, Минск, Тюмень, Эрĕнпур, Ĕпхӳ, Питĕр, Сарă ту тата ыттисем те пире ăшшăн йышăнчĕç. Чăваш Ен Культура министерстви, Чăваш наци конгресĕ, вырăнти ентешсем е хамăрăн пуçарупа йĕркеленĕ тĕл пулусенче вун-вун, çĕр-çĕр чăвашпа курнăçса калаçнă. Вĕсен чун-чĕрине мĕн канăçсăрлантарнине, тăванлăх туйăмĕ нихăçан та сӳнменнине асăннă кăларăмра çырса, каласа кăтартнă. Журналистсем çеç мар, вырăнта пурăнакансем те чăваш шăпипе кăсăкланаççĕ. Самарти Виктор Симаков (халĕ Тутарстанра), Чĕмпĕрти Анатолий Юман, Валентина Тарават, Николай Розов, Томскри Николай Карай, Пушкăртстанри Иван Тарасов, Татьяна Никитина, Питĕрти Виталий Золотов, Эстонири Ираида Захарова, Тюменьри Анатолий Архипов, Тутарстанри Елизавета Илюшкина тата ыттисем те пулăшаççĕ пире, вĕсемпе юнашар пурăнакан маттур ентешĕмĕрсем пирки хыпарласах тăраççĕ. Тавтапуç сире, тăванăмăрсем. Шел, çак тапхăрта авторсенчен хăшĕ-пĕри пирĕн йышран яланлăхах уйрăлса кайрĕ. Тутарстанри Петр Миров, Давид Шашкин, Питĕрти Михаил Медяков статйисемпе тĕрленчĕкĕсене текех алла тытса вулаймăпăр.

Çавăнпа пĕрлех диаспорăра пурăнакансем (тĕрĕссипе, вĕсем çеç мар) тăван чĕлхепе сахалрах вулама пуçлани те шухăша ярать. «Хыпар» хаçатпа «Тăван Атăл» журнал çеç мар, чăвашла пичетленекен илемлĕ литература та питех кăсăклăнтармасть вĕсене. Çакă эпир чăкăлташни мар. Статистика çапла çирĕплетет. Вулав культури çĕр-шывĕпех сӳнсе пынине тĕрлĕ тытăм палăртать. Ку енĕпе «чанне» çине тăрсах çапмалла пулĕ.

Чĕмпĕрте е Кемĕрте, Пушкăртра е Чукоткăра... пурăнатăр эсир, Шупашкар вара сирĕншĕн яланах чи тăван хула пултăр. Унтан килекен кирек мĕнле хыпар та савăнăç çеç кӳтĕр. Сирĕн ятпа кăларакан страница вара – уйрăмах.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 25.09.2012, 185№.*

## ВСТРЕЧА М.В. ИГНАТЬЕВА С РУКОВОДИТЕЛЯМИ ЧУВАШСКИХ НАЦИОНАЛЬНО-КУЛЬТУРНЫХ АВТОНОМИЙ РОССИИ И ЗАРУБЕЖНЫХ СТРАН

*27 октября 2012 года Глава Чувашской Республики М.В. Игнатьев пригласил на встречу руководителей чувашских национально-культурных организаций Российской Федерации и зарубежных стран. Он поздравил участников встречи с 20-летием межрегиональной общественной организации «Чувашский национальный Конгресс» и выразил надежду на дальнейшее укрепление культурных и экономических связей с регионами, где компактно проживают уроженцы Чувашии.*

В ходе беседы обсуждались перспективы дальнейшего развития взаимодействия с соплеменниками, пути сохранения чувашской культуры, традиций, языка, а также экономического сотрудничества в различных регионах. Глава Чувашии отметил, что в республике всегда «горит зеленый свет светофора» для земляков, которые хотят открыть здесь свой бизнес.

Михаил Игнатьев в торжественной обстановке вручил государственные награды Чувашской Республики. Почетная грамота Чувашской Республики за большой вклад в популяризацию чувашской национальной культуры и активную общественную деятельность вручена **Храмову Геннадию Ивановичу** – президенту Красноярской региональной Чувашской национально-культурной автономии. Наград удостоились советник межрегиональной общественной организацин «Чувашский национальный Конгресс» **Анатолий Волков**, председатель Саратовской областной чувашской национально-культурной автономии «Ентеш» **Валерий Клементьев**, председатель региональной общественной организацин «Общество чувашской культуры Республики Башкортостан» **Юрий Михайлов**, член Ассоциации учителей чувашского языка и литературы при межрегиональной общественной организацин «Чувашский национальный Конгресс», учитель муниципального бюджетного общеобразовательного учреждения «Средняя общеобразовательная школа № 56» г. Чебоксары **Галина Николаева**, солист вокально-инструментального ансамбля «Янра, юрă» межрегиональной общественной организацин «Чувашский национальный Конгресс» (г. Чебоксары) **Михаил Федоров**, Благодарностью Главы Чувашской Республики награждены председатель Ассоциации народных мастеров при межрегиональной общественной организацин «Чувашский национальный Конгресс» **Зинаида Воронова**, член Президиума межрегиональной общественной органиации «Чувашский национальный Конгресс» **Нина Димитриева**, председатель Ассоциации учителей чувашского языка и литературы при межрегиональной общественной организацин «Чувашский национальный Конгресс» **Анисия Игнатьева**, председатель исполкома межрегиональной общественной организацин «Чувашский национальный Конгресс» **Константин Портнов**.

После вручения наград состоялась дружеская беседа участников встречи с Главой Чувашской Республики. Руководители региональных и зарубежных чувашских национально-культурных организаций поблагодарили Михаила Васильевича за теплый прием, рассказали о достижениях и трудностях в своей деятельности, намерениях в дальнейшей общественной работе, в укреплении экономических и культурных связей. В своем выступлении Геннадий Храмов поблагодарил Главу Чувашии за внимание к региональным чувашским организациям, высказал пожелание в укреплении кадрами Министерство культуры, по делам национальностей и архивного дела Чувашской Республики, укреплении материально-технической базы Чувашского национального конгресса.

gov.cap.ru. *27.10.2012.*

## ÇЫХĂНĂВА ÇИРĔПЛЕТЕС ТĔЛЛЕВПЕ

*Иртнĕ эрне кун Чăваш наци библиотекине Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенчи тата чикĕ леш енчи чăваш наци культура пĕрлешĕвĕсен ертӳçисем пуçтарăнчĕç. Вĕсем республикăн патшалăх влаçĕн, культура учрежденийĕсен органĕсен ертӳçисемпе тĕл пулчĕç. «Çавра сĕтел» теми – диаспорăри культура обществисем Чăваш Ен патшалăх влаç тытăмĕсемпе культура, вĕренӳ тата спорт тĕлĕшпе çыхăну тытса ĕçлесси, умри çивĕч ыйтусем тата вĕсене татса парассси.*

«Çавра сĕтеле» ЧР культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕ **Вадим Ефимов** ертсе пычĕ. Мероприятие çавăн пекех ЧР Патшалăх Канашĕн Социаллă политикăпа наци ыйтăвĕсен комитечĕн председателĕ **Петр Краснов**, ЧР вĕренӳ министрĕн çумĕ **Светлана Петрова**, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ **Геннадий Архипов** хутшăнчĕç.

Вадим Ефимов регионсенче, çавăн пекех чикĕ леш енче те чăваш наци юхăмĕ вай илсе пынине палăртрĕ. Сăмахран, **юлашки пилĕк çулта чăваш культура пĕрлĕхĕсен шучĕ 71-тен 90 çитнĕ**. «Çак пулăм, – терĕ министр, – йахташсем хăйсен культурипе, йăли-йĕркипе кăсăкланнипе, вĕсене упраса хăварассипе çыхăннă».

Пушкăртстанри чăваш культура обществин председателĕн **Юрий Михайловăн** шухăшĕпе – общество ĕçне лайăхлатма кăçал ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Ĕпхӳре пулни, унта икĕ республика шайĕпе килĕштерсе ĕçлесси пирки килĕшӳ туни самай пулăшнă. Палăртса хăвармалла: кăçал Пушкăртстанра Чăваш Республикин культура кунĕсем иртрĕç. Юлашки вăтăр çулта пулманччĕ-ха вĕсем. «Çакăн хыççăн пăр тапранчĕ, – терĕ Юрий Павлович. – Ĕпхӳре «Салам» фестиваль йĕркелерĕмĕр. Унта 40 коллектив тарăн йышăнма пултартăмăр. Республикăри чăвашсен 11 фольклор ушкăнĕ тĕрлĕ регион фестивалĕсене хутшăнчĕ».

Тюмень облаҫӗнчи «Тӑван» ассоциаци председателӗ **Анатолий Архипов** ҫулталӑк пуҫламӑшӗнчи «Ҫӗпӗрпе Инҫет Хӗвел тухӑҫӗнчи чӑвашсен культурине упраса хӑварассин ҫивӗч ыйтӑвӗсем» ӑслӑлӑх практика конференцийӗ пирки аса илчӗ. Ӑна Раҫҫей федераци чӑваш наци культура автономийӗпе пӗрле йӗркеленӗ. Ҫав вӑхӑтра Чӑваш патшалӑх академи симфони капелли пысак йышпа Тюмень облаҫӗнче гастрольте пулнӑ. Унӑн пултарулӑхӗпе чӑвашсем, ытти халӑх ҫыннисем паллашнӑ, чӑваш профессионал искусствине пысӑк хак панӑ.

Чӗмпӗр хутлӑхӗнчи чӑваш наци культура автономийӗн председателӗ **Владимир Сваев** вӗренӳ ӗҫӗнче чӑваш учебникӗсем, методика хатӗрӗсемпе пособисем ҫитменнине асӑнчӗ. Ҫакӑн пирки ЧР вӗренӳ министрӗн ҫумӗ Светлана Петрова ҫапла пӗлтерчӗ: «2007 ҫултан пуҫласа Чӗмпӗрсем чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекенсене пулӑшма кӑларнӑ пӗр кӗнеке те туянман, ун пирки ҫулленех ҫырса пӗлтеретпӗр пулсан та».

Питӗр чӑвашӗсем кӑҫал чылай пысӑк ӗҫ тунӑ. Вӗсенчен пӗри хулари Пискарево асӑну комплексӗнче Ленинграда нимӗҫ фашисчӗсенчен хӳтӗлесе пуҫ хунӑ 5 пин ытлаентеш ячӗпе (вӗсенчен 300-шӗ асӑннӑ масарта выртать) Асӑну плити уҫнӑ. Ҫитес ҫулхи тепӗр пысӑк мероприяти – паллӑ ентеш Никита Бичурин ӑсчах-синолог ҫуралнӑранпа 235 ҫул ҫитнине сумлӑн паллӑ тӑвасси.

**Константин Яковлев** (Тутарстанри чӑваш наци культура автономийӗ) шухӑшӗпе – чӑвашлӑх енӗпе тӗллевлӗ ӗҫлемелле.

Чӑваш наци конгресӗн президенчӗ **Геннадий Архипов** общество майӗпе ӗҫлекен организацин тем тӗрлӗ ыйтӑва татса пама тивни пирки пӗлтерчӗ. Хальхи вӑхӑтра мӗн тивӗҫтермест ӑна? Наци телекуравӗнче ырӑсла кӑларӑмсем ытларах пулни, чӑваш специалисчӗсем ҫителӗксӗр ӗҫлени; ЧНКна тытса тӑма патшалӑх пулӑшманни; Акатуя патшалӑх шайӗпе ирттерменни; влаҫ тытӑмӗнче тӑван чӗлхепе калаҫманни тата ытти те.

Надежда СМИРНОВА.<br>*«Хыпар», 30.10.2012, 207№.*

## ТУПАЙӐПӐР-ШИ ПУЛАСЛӐХ НИКӖСНЕ?

*Чӑваш наци конгресне туса хунӑранпа 20 ҫул иртрӗ. Конгресӑн паянхи ӗмӗт-тӗллевӗ те ун чухнехи пекех – наци аталанӑвӗн тӗп ҫул-йӗрне, культурӑпа чӗлхе малашлӑхне, наци пӗрлӗхне палӑртасси тата ҫирӗплетесси, «тӗп» чӑвашсемпе (ЧРта пурӑнакансемпе) тулашри йӑхташсен ҫыхӑнӑвне ҫӗнӗлле йӗркелесси. Мӗнлерех пурнӑҫланса пыраҫҫӗ-ха вӗсем? Шӑпах ҫакӑн пирки пычӗ те калаҫу шӑмат кун К.В. Иванов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх академи драма театрӗнче. Унта Чӑваш наци конгресӗн Мӑн Канашӗн анлӑ ларӑвӗ иртрӗ.*

Лару ӗҫне Раҫҫейӗн вун-вун регионӗнчен, ҫавӑн пекех Эстонирен килсе ҫитнӗ йӑхташсем хутшӑнчӗҫ. Влаҫ тытӑмӗсен представителӗсенчен ҫаксем: Чаваш Республикии Патшалӑх Канашӗн Председателӗ **Юрий Попов**, ЧР культура, национальноҫсен ӗҫӗсен тата архив ӗҫӗн министрӗ **Вадим Ефимов**, ЧР Патшалӑх Канашӗн Социаллӑ политикӑпа наци ыйтӑвӗсен комитечӗн председателӗ **Петр Краснов**, ЧР вӗренӳ министрӗн ҫумӗ **Светлана Петрова**.

Йӑлана кӗнӗ йӗркепе халӑхӑн хисеплӗ ҫыннисем, ЧНК Ваттисен Канашӗн хастарӗсем **Никифор Наумов** мӑчавӑр тата СССР халӑх артистки **Вера Кузьмина** ларӑва ӑнӑҫлӑ ӗҫлеме сунчӗҫ.

– Юратнӑ тӑвансем, хӑнасем! Чӑвашлӑха упракан паттӑрсем! Эпир, тӗнчери чӑвашсем, паян ЧНК 20 ҫул тултарнине паллӑ тума пухӑнтӑмӑр. Эй, Турӑ, чӑваш тӗнчине упракан Турӑ, эсӗ пире хӑвӑн хӑватна парса тӑратӑн, ҫынсене, ачасене чӑвашла пуплеме хистетӗн, кӳршӗ халӑхсемпе кӑмӑллӑ пурӑнма сунатӑн.

Эй, Ҫӳлти Турӑ, пурнӑҫ малалла та ӑнса пытӑр, вӗҫсӗр-хӗрсӗр тӗнчере чӑвашсем пӗрмай вӑйланса пычӑр. Ҫапла пултӑр! – терӗ Никифор Егорович, Вера Кузьминична вара халӑхӑмӑра хӑватлӑ Ҫӗр-аннемӗр вай парса, ҫутӑ хӗвел ӑшӑтса тӑрасса шаннине палӑртрӗ.

Ҫӗнӗ йӑла кӑлармасӑр, мӗн пуррине пӑсмасӑр юлашки тапхӑрта ҫут тӗнчерен уйрӑлса кайнӑ чаплӑ ентешӗмӗрсене хисеп туса пӗр самант шӑп тӑнӑ хыҫҫӑн лару ӗҫе пикенчӗ.

Конгресӑн ӗҫӗ-хӗлӗ пирки унӑн президенчӗ **Геннадий Архипов** доклад турӗ. Пысӑках мар статьяра вӑл хускатнӑ ыйтусене туллин ҫырса кӑтартма май ҫук. Тӗп самантсенчен ҫаксене палӑртнӑ пулӑттӑм. Геннадий Николаевич Наци радиовӗ ӗҫлеме пуҫланине ырларӗ. Унта ЧНК хастарӗсем тӗрлӗ кӑларӑм хатӗрлеҫҫӗ. Ҫулталӑк каялла сенкер экран ҫине тухнӑ наци телекуравӗ вара, докладҫӑ шухӑшӗпе, ҫитменлӗхсемсӗр мар-ха. Вӗсен ӗҫченӗсенчен чылайӑшӗ тӑван чӗлхепе калаҫма пултараймасть.

Чӑвашлӑх ӗҫӗнче шкул пӗлтерӗшӗ пысӑккине шута хурса ЧНК ҫумӗнче Чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекенсен ассоциацине йӗркеленӗ. Унашкал пӗрлӗх Шупашкарти ача сачӗсен воспитателӗсен те пур.

Халӑхӑн чаплӑ уявне – Акатуя – ирттерессине йӗркелесе ярасси пирки те чарӑнса тӑчӗ президент. «Пирӗн сӗнӳ паллӑ, – терӗ вӑл, – ҫӗртмен 23-мӗшӗнче, тӑван халӑхӑмӑрӑн тӗп уявӗ умӗн, «Раҫҫей ҫал куҫӗсем» фестиваль ирттересчӗ, тепӗр кунне вара – Республика кунӗнче – Акатуй хуҫалантӑр хулара».

ЧНК хӑй мӗн пултарнине тума тӑрӑшать. Акӑ чӑваш кӗрешӗвне чӗртсе янӑ. Халӗ чӑваш уявӗ унсӑр иртмест. Ал ӑстисен пӗрлешӗвӗ те пуҫарулӑх кӑтартать. Конгресс хастарӗсем Вячеслав Оринов, Алексей Иванов, Николай Сахаров, Владимир Карсаков тӑван чӗлхепе илемлӗ фильмсем ӳкереҫҫӗ. ЧНК вице-президенчӗ, «Тус» фирма ертӳҫи Николай Угаслов тӑрӑшнипе Ҫӗрпӳ районӗнче тата Тутарстанри Ҫӗпрел районӗнче ҫӗнӗ чиркӳсем ҫӗкленнӗ. Вӑл тунӑ паллӑрах ытти ӗҫ хушшинче – Николай Полоруссов-Шелепин, Петр Дементьевӑн, Иван Яковлевӑн Тутарстанра тата Чӗмпӗр хулинче ҫӗкленӗ палӑкӗсем. Халӗ тепӗр пысӑк ӗҫ – Чӑваш Республикин Хисеплӗ гражданинне Геннадий Волков академика сума суса унӑн тӑван ялӗнче тата Шулашкарта палӑксем лартасси.

ЧР Патшалӑх Канашӗн Председателӗ **Юрий Попов** Конгресс хастарӗсене паллӑ пулӑмпа саламланӑ май унӑн малтанхи тапхӑрӗнче уйрӑмах палӑрнӑ ентешсене Патшалӑх Канашӗн Хисеп грамотипе чысларӗ. Вӗсем – Атнер Хусанкай, Виталий Никитин (Станьял), Олег Мустаев (Чӗмпӗр), Константин Яковлев (Хусан). ЧНКн пӗрремӗш тата хисеплӗ президенчӗ **Атнер Хусанкай** хӑйӗн сӑмахӗнче чӑваш тӗнчи пуррине, ӑна туйса тӑнине пӗлтерчӗ. Атнер Петрович ҫав вӑхӑтрах паянхи хастарсен ӗҫӗ пӗр енлӗ – чӑвашлӑх ыйтӑвӗ тавра ҫеҫ – йӗркеленсе пынине палӑртрӗ. «Ҫав вӑхӑтрах тӗнчери халӑхсемпе, Атӑлпа Урал хушшинчи кӳршӗсемпе ҫыхӑнса ӗҫлемелле, – терӗ вӑл. – Хӑй вӑхӑтӗнче – 1993 ҫулта – ЧНК Тӗнчене тухайман халӑхсемпе нацисен организацине кӗчӗ, халӗ ҫав хутшӑнусем татӑлнӑ».

**Атнер Хусанкай** Ҫеҫпӗл Мишшин «Пуласси» сӑввинчи ҫак йӗркене илсе кӑтартрӗ: «Тантӑшлӑх, тӑванлӑх, юрату кӑварӗ...» «Пирӗн пуласси ҫав виҫӗ ӑнлав ҫинче никӗсленмелле. Вӗсене тытса пырсан, чӑваш ӑс-хакӑлӗнче чӑваш тӗнче курӑмне палӑртма пултарсан халӑх та, Чӑваш наци конгресӗ те чӗрӗ пулӗҫ».

ЧР вӗренӳ министрӗн ҫумӗ **Светлана Петрова** пӗлтернӗ тӑрӑх – диаспорӑри 300 шкулта тӑван чӗлхене вӗрентеҫҫӗ. Ҫак ӗҫе пурнӑҫлама пулӑшас тӗллевпе учебниксем, хушма пособисем пичетлеҫҫӗ. Кӑҫал ун валли 30 млн тенкӗ уйӑрнӑ. «Ачасене шкулта чӑвашла вӗрентетпӗр-ха, килте вара ҫакна малалла тӑсмасан, ашшӗ-амӑшӗ пепкисемпе ырӑсла ҫеҫ пуплесен пирӗн ӗҫ харама каять», – терӗ Светлана Владимировна.

Республика тулашӗнчи йӑхташсем та сцена ҫине хӑпарчӗҫ, хӑйсем ҫак тапхӑрта тунӑ ӗҫсемпе паллаштарчӗҫ. Хальхи вӑхӑтра диаспорӑри чӑвашсене 90 пӗрлӗх, общество, центр ҫыхӑнтарса тӑраҫҫӗ. Вӗсен ӗҫ-хӗлӗ тӗрлӗ ҫӗрте тӗрлӗрен. Пӗрисемшӗн ҫулталӑкне пӗр-икӗ концерт кӑтартни, виҫӗ-тӑватӑ хут тӗл пулса калаҫни те пысӑк ӗҫ

шутланать-мӗн. Теприсем, сăмахран, Тутарстанри, Пушкăртстанри, Чӗмпӗр облаçӗнчи чăваш наци культура автономийӗсем, хастарлăхпа, çаврăнăçулăхпа палăрса тăраççӗ.

42 зул каялла тăван Муркаш районӗнчен инçетри Эстонири Нарва хулине тухса кайнă **Лидия Григорьева** унти чăваш культура центрне ертсе пырать. Нарвăра пурӗ те 103 чăваш çеç, вӗсенчен çурри общество йӗркелекен мероприятисене хутшăнать. Пӗчӗк йышпа та пысăк ӗçсем йӗркелеме вăй çитереççӗ. Çулла чăваш тумӗн уявне ирттернӗ, вырсарни шкулӗнче ачисемпе мăнукӗсене тăван чӗлхене вӗрентеççӗ, халăх йăли-йӗркипе, культурипе паллаштараççӗ. «Наци радионе итлесе чунпа канатпăр», – терӗ юлашкинчен Лидия Григорьевна.

**Федор Карягин** (Чăваш Ен) хăй вăхăтӗнче чăваш ялӗсен ячӗсене вырăсла киревсӗр, хитре мар сăмахсемпе куçарнине пула республикăра унашкал тӗслӗх чылай пуçтараннине асăнчӗ. «Халăха сума сăвар, Чăваш Ен картти çинчен вӗсене кăларар та чăннисемпе улăштарар», – терӗ.

Чăвашсем пурăнакан хутлăхсенче этнопедагогикăна «симӗс» çул пама **Константин Портнов**, Чăваш Республики çумне «Атăлçи Пăлхар» хушма ят кӗртме тата Пăлхар патшалăхӗн историне тарăн тишкерме **Владимир Булгарский** сӗнчӗç.

**Чăваш наци конгресӗн çӗнӗ вице-президенчӗсем пулма Вячеслав Ориновпа Валерий Клементьева çирӗплетрӗç**

Лару хыççăн сцена çинче театрализациленӗ «Хӗр сăри» уяв иртрӗ. Чăваш халăхӗн авалхи йăли-йӗркине çӗнӗрен чӗртсе тăратакансем – И.Я. Яковлев ячӗллӗ Чăваш патшалăх педагогика университечӗн музыка-педагогика факультечӗн вӗренекенӗсем. Ертӳçи – **Зинаида Козлова**. Çавăн пекех **Зинаида Воронова** ал ӗç ăстин, «Паха тӗрӗ» фабрикăн чăваш халăх тумӗн кăтартăвӗ те, иккӗленӳ çук, пурне те килӗшрӗ. Пирӗн капăр тумпа паллашнă хыççăн никам та чăваш мӗскӗн, чăваш нишлӗ пулнă тесе калаймӗ.

Надежда СМИРНОВА.
*Хыпар», 30.10.2012, 201№.*

## Атнер ХУЗАНГАЙ: «ДУХ И ИДЕИ В КОНЕЧНОМ ИТОГЕ ВСЕГДА ПОБЕЖДАЮТ»

*Начало 1990-х годов стало временем мощного подъема чувашского национального движения: ему удалось добиться представительства в органах власти и принятия ряда законов, утверждающих суверенитет чувашского государства. У этого движения был признанный лидер – филолог-востоковед Атнер Петрович Хузангай. В 1991 году он остановился в шаге от того, чтобы стать президентом Чувашии. Через несколько лет Хузангай порвал с политикой и вернулся в мир науки, с тех пор его мнение об актуальных событиях можно услышать редко. В интервью «Ирӗклӗ Сăмах» Хузангай поделился своими мыслями о прошлом, настоящем и будущем чувашского движения.*

**– Атнер Петрович, в свое время Вы вели очень активную деятельность с позиций чувашского национализма, сейчас же полностью отстранились от политической жизни. Тем не менее, я задам такой вопрос: что Вы думаете о нынешней политической ситуации в России в целом и в Чувашии в частности?**

– Конечно же, то, что происходит сейчас и на федеральном уровне, и у нас в республике, мне совсем не нравится. Я говорю о периоде, который начался примерно с середины-конца 1990-х годов. В конце 1980-х – начале 1990-х существовали (может быть, в зачаточной форме, но все же) более-менее свободные, демократические выборы; была свобода самовыражения, свобода слова. Потом все это начали потихоньку сворачивать, и мне стало просто неинтересно участвовать в такого рода имитациях. Тем более, в выборах, которые уже давно не являются выборами.

**– Но к этому времени Вы успели приобрести уже довольно богатый избирательный опыт.**

– Да, я пять раз участвовал в выборах разного уровня. Кроме того, с 1992 по 1997 год я был президентом Чувашского национального конгресса (ЧНК). Ушел оттуда примерно по тем же причинам. Но за мной оставались функции поддержки внешних связей по линии UNPO (Организации непредставленных наций и народов).

**– Правильно ли сказать, что Вы ушли из политики потому, что она как таковая перестала Вас интересовать? Или Вы сочли, что у чувашского движения недостаточно ресурсов, чтобы бороться с негативными тенденциями? Вы же остались на прежних позициях?**

– Позиции-то остались прежними. Но, во-первых, уже не было прежнего энтузиазма. Во-вторых, ситуация сложилась так, что было глупо биться лбом о каменную стену. Прежние соратники тоже разбрелись кто куда. Положение изменилось везде, не только в Чувашии: скажем, татарское национальное движение тоже поутихло после периода активности в 1990-х. И исчезло чувство солидарности хотя бы в Урало-Поволжском регионе. Прежде мы активно сотрудничали с мордовской «Масторава», Марий Ушем, Удмурт Кенеш, Башкирским национальным центром, Татарским общественным центром, татарской партией Иттифак. В 1994 году даже провели в Шубашкаре учредительный съезд Ассамблеи народов Поволжья и Урала с довольно широким представительством. ЧНК отстаивал интересы чувашского народа и на международном уровне по линии UNPO и Ассамблеи тюркских народов.

<…>

**О бывших соратниках**

**– На президентских выборах в 1991 году за Вас проголосовали больше 40 процентов...**

– 46 процентов.

**– То есть мы можем сказать, что практически половина населения Чувашии разделяла чувашские национал-демократические ценности. Прошло 20 лет, и чувашский национализм фактически находится в загоне. Что случилось? Ведь люди остались теми же. Может быть, дело в банальном конформизме: изменился политический тренд, и люди стараются плыть по течению...**

– Вероятнее всего.

**– Такая же ситуация и с конкретными персонажами – в том числе с теми, кого Вы когда-то могли назвать своими соратниками. Скажем, поэт Валерий Тургай в начале 1990-х был радикальным чувашским националистом. И вот спустя 20 лет он выступает уже как доверенное лицо Владимира Путина – человека, который радеет за создание единой «российской нации». А ведь эта идея сильно вредит национальному сознанию нерусских народов.**

– Тургай, скажем так, человек непоследовательный. Когда создавались ЧНК и ЧАП (Чăваш Аталанăвӗн Партийӗ, Партия чувашского развития. – «Ирӗклӗ Сăмах»), когда шла моя президентская кампания 1991 года, он действительно был чувашским националистом. Потом, когда пришел Федоров в 1993 году, он стал верным федоровцем. Федоров даже присвоил ему звание народного поэта Чувашии. Потом Тургай стал честить Федорова на каждом углу, и вот он уже преданный сторонник Игнатьева. Почему так? Наверное, характер такой. Перепады политической температуры для поэтов чреваты...

**– Еще один видный когда-то деятель чувашского движения – скончавшийся недавно Аркадий Айдак. В начале 1990-х он тоже был Вашим соратником, защищал чувашскую идею, проповедовал возрождение чувашской религии... В 2012 году Айдак выступал на предвыборном митинге в поддержку Путина. Как это объяснить?**

– Точно не знаю. В последнее время я с ним, к сожалению, не встречался. Он ведь недавно получил звание почетного гражданина Чувашской Республики. Я хотел приехать, поздравить... а он и умер. Такое вот печальное событие.

Помню, как мы вместе с Айдаком работали в Верховном Совете Чувашской, тогда еще, АССР. Я видел две цели своего депутатства: добиться принятия Закона о языках и Декларации о суверенитете Чувашской Республики. Когда мы свои проекты опубликовали (я был председателем постоянной Комиссии Верховного Совета по культуре, развитию языка и межнациональных отношений), начались ожесточенные споры, обсуждения... Айдак участвовал в них на нашей

стороне. На сессии 27 октября 1990 года я должен был выступить по Закону о языках… И когда надо было уже идти на трибуну, Айдак проводил меня цитатой из Гёте: «Лишь тот достоин жизни и свободы, кто каждый день идет за них на бой». Хороший он был человек.

…Я думаю, Айдак испытал определенное разочарование от того, что происходило. Ситуация в чем-то схожая с моей. Почему он за Путина выступал, я не знаю. Может быть, кто-то из руководства сказал ему, что он должен выступить. Хотя если бы мне это сказали, я бы ответил: да идите к черту. Но мне такого никто и не предложит.

<…>

**«ЧНК создавался не для того, чем он занимается сейчас»**

**– Что Вы думаете о деятельности Чувашского национального конгресса после того, как вместо Вас его возглавил Геннадий Архипов? Видите ли в пользу в его работе?**

– ЧНК иногда, конечно, пытается стимулировать официальные структуры на какие-то шаги в области преподавания чувашского языка, в сфере культуры. Кроме того, проводит национально окрашенные культурные мероприятия: «Акатуй», «Кĕмĕл сасă», «Чăваш Пики» и так далее. Но ЧНК создавался не для этого. Первоначально его цели были…

**– Политическими?**

– Да, практически все они были политическими. Сейчас же Конгресс боится политики как черт ладана. Они не высказывают своей позиции ни по каким вопросам. Я считаю, что это неправильно. Конечно, можно и отвернуться от политики, но это такая вещь, что, если выгонишь её в окно, она к тебе в форточку залезет.

По моей мысли, должно было бы происходить так. Есть у нас официальные структуры – правительство, Госсовет и так далее. Есть хура халăх (простой народ. – «Ирĕклĕ Сăмах») – в хорошем смысле слова. И есть промежуточная между ними структура ЧНК, которая проводит свою идеологию, доносит её до народа, но и чаяния народа доносит до официальных структур. Такой треугольник с сообщающимися сосудами. Сейчас, к сожалению, ЧНК не выполняет этой функции.

**– ЧНК – все-таки организация, зависимая от власти, живущая на государственное финансирование. Трудно ждать от нее самостоятельной политической воли. Но возьмем, к примеру, Белоруссию, где местные националисты находятся в радикальной оппозиции к режиму Лукашенко. Почему в Чувашии не слышно о попытках отстаивать чувашские интересы в рамках независимой организации? Понятно, что власть не потерпит такой самоорганизации, но ведь лучше пытаться что-то сделать, чем не делать ничего.**

– Были такие попытки, но все они заканчивались безуспешно. Хотя какая-то оппозиция, конечно, существует. По-моему, году в 2002-м она подготовила молодого бизнесмена Капитонова на должность президента ЧНК. Но перед съездом Конгресса он сам сказал: я не буду баллотироваться. Просто власть заранее определила на эту должность Архипова, а Капитонов и побоялся идти против.

Мы все время сталкиваемся с подобными ситуациями. Дело, конечно, не в том, чтобы «свалить» конкретно Архипова. Но нужна другая идеология, другая механика отношений с властью. Сейчас якобы идет какой-то диалог, но никаких особых результатов он не приносит. Кроме того, еще Мĕтри Юман писал, что чувашам нужно перейти от мышления на уровне ял'а («деревни») к новой политической философии, к общенациональной идеологии. Мы пытались работать над этим в начале 1990-х, но потом эта тема развития не получила. И сейчас мы опять вернулись к идеологии ял'а. Это хорошо было видно на последнем съезде ЧНК. Делегаты из диаспор отчитывались о своей деятельности, но вся она ограничивалась плясками, кружками… Общенациональных устремлений у них нет: пензенских делегатов интересует пензенский чăвашлăх, саратовских – саратовский. При этом он носит такой орнаментальный танцевально-обрядово-фольклорный характер… Я видел это уже сто раз, и такие выступления мне уже очень надоели. Чувашский орнамент, безусловно, древен и содержит в себе некий сакральный смысл, но нужна политическая идеология, которая отвечала бы реалиям нового времени, сегодняшнего дня. Демократия прямого действия, так сказать.

<…>

**– Атнер Петрович, если оглядываться из 2012 года в начало 1990-х, как Вы считаете – был тогда шанс на победу национального движения? И насколько он был высок?**

– Был, конечно. Я думаю, что, скорее всего, президентские выборы 1991 года мы выиграли. Были там подтасовки или нет – никто не проверял. Хотя тогда и Закон о выборах был очень странный, потом его переписали.

Я не буду утверждать, что, если бы мы пришли к власти, все было бы хорошо. После распада Союза власть много где приходила в руки, скажем так, «националистов-гуманитариев». Управленческого опыта им явно не хватало, дров можно было наломать много. Но, мне кажется, что какой-то след в новейшей чувашской истории нам бы оставить удалось. Исходя из опыта чувашского национал-демократического движения начала XX века, практики национально-культурного строительства первых 10–12 лет советской власти. Проводя разумную национальную и языковую политику, объединяя устремления всех чувашей, разбросанных волею судеб по городам и весям страны, задействовав духовный потенциал чувашской нации. Дух и идеи всегда побеждают в конечном итоге. Они остаются и в какой-то конкретной социально-политической ситуации еще будут востребованы. Не только хлебом насущным жив человек.

«We shall overcome some day…» (Все преодолеем).

Беседовал Сандр САВГИЛЬДА.
*http:/www.irekle.org/articles/i29.html.*

## МАЛАШЛĂХ УТĂМĔСЕНЕ ПАЛĂРТНĂ

*Çынсен пурнăçне лайăхлатасси, çĕр-шыва, Чăваш Республикине малалла ярасси, чăвашлăха аталантарасси – çак шухăшсене тĕпе хурса иртнĕ Чаваш Республкин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администраци ертӳçи* ***А.С. Иванов*** *Чăваш наци конгресĕн хастарĕсемпе йĕркеленĕ тĕл пулу.*

Чăваш наци конгресĕн президенчĕ **Геннадий Архипов** ЧНК 2013 çулта туса ирттермелли тĕп ĕçсем çинчен каласа панă. Чавашлăха аталантарас тĕлĕшпе республикăра тата унăн тулашĕнче пурăнакан йăхташсемпе куллен пурнăçламалли ĕçсемпе пĕрлех пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприятисене палăртнă. Вĕсем–чăвашсен авалхи йăли-йĕркипе çыхăннăскерсем, çавăн пекех наци хăватне палăртакан Акатуй. Ытти çул ЧНК ăна хăйĕн вăйĕпе çеç ирттернĕ, кăçал çак ĕçе Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерстви хастаррăн хутшăнасшăн, Вадим Ефимов министр çак ыйтăва хăйĕн витĕмĕнче тытать. Ку енĕпе министерствăра çак кунсенче ятарлă канашлу ирттернĕ те ĕнтĕ.

Акатуй – пĕрлĕх уявĕ. Унта ытти наци çыннисене чĕнессине те палăртрĕ Геннадий Николаевич. ЧНК кунпа çеç лăпланасшăн мар, кăçал вăл пуçласа ачасен Акатуйне йĕркелесшĕн. Вăл Раççейри мĕн пур чăваш ачисемпе çамрăкĕсен уявĕ пулĕ. Вăл çу уйăхĕнче иртĕ.

Чăваш наци Конгресĕ – общество организацийĕ. Çавăнпа та ун валли укçа-тенкĕ республика бюджетĕнчен уйăрма йывăртарах. Çĕр-шывра, республикăра социаллă тĕрлĕ проектсем валли грантсем уйăрасси çирĕппĕн йăлана кĕрсе пырать. Çав майсемпе туллинрех уса курма палăртать те ЧНК. Еплерех проектсем хатĕрленĕха Чăваш наци конгресĕ? Кун пирки тĕл пулура ЧНК ĕçтăвкомĕн председателĕ **Константин Портнов** каласа панă. Паян информаци пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк пулнине пурте пĕлеççĕ. Çавна май ку енĕпе ЧНК кăçал тимлĕрех пуласшан. «Хыпар» ИÇпе кăларса тăракан «Чăваш тĕнчи» хаçатра Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В.В. Путин Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвне янă çырура «Пирĕн çĕр-

шыв нумай нациллӗ пулнинче пирӗн илем тата пирӗн вӑй» тесе палӑртнине шута илсе хаҫатра ҫутатма ку енӗпе ятарлӑ проект хатӗрленӗ. Чӑваш наци конгресне йӗркелеме йышӑннӑ Аслӑ пухура (1992 ҫулта) республикӑра ятарласа Чӑваш наци радиовӗ, Чӑваш телекуравӗ йӗркелемелли ҫинчен резолюци йышӑннӑ. Мӗн палӑртни пурнӑҫланать. Чӑваш наци радиовӗ тӑван чӗлхе сассипе ҫителӗклех янӑрать. Наци телекуравӗ те ӗҫлеме пуҫларӗ. Шел те, унта чӑваш сӑмахӗ сахалрах илтӗнет. Сӑлтавӗ тӗрлӗрен. Ҫавӑнпа ЧНК пулӑшу сӗнет. Эрнере икшер сехет чӑваш тӗнчи ҫинчен каласа паракан программа хатӗрлесшӗн. Кунсӑр пуҫне республикӑра телекуравӑн тата тепӗр икӗ каналӗ пур – ЧПТРК тата «ЮТВ» компанисем. Вӗсене те ЧНК проектсем сӗнет. Пӗрин валли – «Тӑванлӑх» передача, теприне – «Пӗрле калаҫар-ха» тавлашу клубӗ.

Радио валли те сӗнӳсем пур. Наци радиовӗ тӗнчери чӑвашсен пурнӑҫне туллин ҫутатакан «Чӑваш пурнӑҫӗ» передачӑпа пуянланӗ, Чӑваш радиовӗ – «Виҫҫӗмӗшӗ» (чӑваш йышне ӳстерес, воспитани ӗҫне лайӑхлатас ыйтусемпе) кӑларӑмпа.

А.С. Иванов ЧНК тӑратакан проектсем пурте вырӑнлӑ, кирлӗ пулнине палӑртнӑ.

Тӗл пулура Чӑваш наци конгресӗн вице-президенчӗсем **Вячеслав Оринов, Валерий Клементьев, Вячеслав Христофоров** чӑвашлӑха малалла аталантарас енӗпе ҫыхӑннӑ ыйтусене хускатнӑ.

О. ВАСИЛЬЕВ.<br>*«Хыпар», 19.01.2013, 8–9№.*

## ТӖНЧЕРЕ НАЦИ НУМАЙ, ЧӐВАШ – ПӖРРЕ

*2013 ҫулхи юпа уйӑхӗн 9-мӗшӗсенче Шупашкарта Чӑваш наци конгресӗн черетлӗ съезчӗ пухӑнмалла. Вӑхӑт нумай юлмарӗ. Ҫынсен, тӗрлӗ ушкӑнӑн съезд умӗнхи шухӑш-кӑмӑлне пӗрлештерес тӗллевпе «Хыпар» хаҫатра «Калаҫу тӗпелӗ» уҫма сӗнетӗп.*

Чӑваш наци конгресӗ ӗҫлеме пуҫланӑранпа икӗ теҫетке ҫул иртрӗ. Вӑл вӑхӑтра Раҫҫей патшалӑхӗнче те, чӑваш халӑхӗн кун-ҫулӗнче те питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ тӗрлӗ улшӑну пайтах пулчӗ. Чӑваш конгресӗ ҫав улшӑнусен вӑхӑтӗнче хӑйӗн кирлӗлӗхне, чӑмӑртану хӑватне, малаш туртӑмне кӑтартса хӑварма пултарчӗ. Вӗсене халӗ аванах курса тӑратпӑр.

Чӑваш конгресӗ юлашки ҫулсенче мӗн тунӑ е мӗн туманни ҫинчен каланисем, ҫырнисем ҫителӗклех пулчӗҫ. 20 ҫулхи юбилейӗнче каланӑ сӑмахсем те пичетленчӗҫ. Чӑваш халӑхӗн «хӳтӗлев механизмӗн» шанчӑклӑ тӗп шалтӑрми – шӑпах Наци конгресӗ. Йӗркеллӗ ӗҫлесен вӑл халӑхпа патшалӑхшӑн ҫав тери сулӑмлӑ та сумлӑ ӗҫсем туma пултарать. Тӗнче тӑрӑх сапаланса пӗтнӗ халӑха пайӑр-пайӑр чӑмӑртаса Шупашкар тавра пӗрлештермелли лайӑхрах мел халӗччен никам та сӗнеймерӗха. Вырӑнти культура автономийӗсене, центрсемпе пӗрлешӳсене, шкулсемпе вулавӑшсене, клубсемпе ансамбльсене урӑх нихӑш фонд та, центр та Конгресс чухлӗ туртса тӑраймӗ. Ку мел чӑннипех те ӑнӑҫлӑ пулнине халӗччenхи опыт витӗмлӗ ҫирӗплетсе пачӗ. Эппин, текех Чӑваш наци конгресӗн ҫитменлӗхӗсемпе йӑнӑшӗсем ҫинчен мар, малалла мӗн тата мӗнле тӑвасси пирки пуҫа ватса пӑхӑпӑр.

Ҫӗнӗ вӑхӑтӑн ҫӗнӗ лару-тӑрӑвӗнче пӗтӗм чӑваш халӑхӗн пӗрлӗх органӗн – Наци конгресӗн – ҫӗнелӳ ҫулӗ ҫине тӑма вӑхӑт ҫитни уҫҫӑн паллӑ, ун ҫинчен иртнӗ съездрах каланӑччӗ.

Ку съездра ҫӗнетӳ пулмаллах. Аталанмасӑр пӗр вырӑнта тӑракан, ҫӗнӗ шухӑшпа ҫӗнелме пултараймаn, тӑван республикӑри халӑха тулайри чӑвашсемпе пӗрлештерсе ҫитереймен Конгресс халӑха та, патшалӑх тытӑмне те кирлӗ мар пулса юлать. Манӑн шухӑшӑмпа – чӑваш халӑхӗ нихҫан та пӑрахӑҫа тухма килӗшес ҫук. Чӑваш аптраманлӑхӗнчен тӗнче тӗлӗнет. Пирӗн питех те ҫирӗп ӗненӳ пур: чӑваш тӗнче пӗтсен тин пӗтет!

«Конгресс мӗн тума кирлӗ, унсӑрӑн та пурӑнма пулать», – текен сахалланчӗ. Паллах, суту-илӳ айне пулнӑ пайтаҫӑсене, влаҫпа мул ӑшне путнӑскерсене халӑх пӗрлӗхӗсем кирлӗ мар. Вӗсене наци ыйтӑвӗ, халӑхсен культури, чӗлхи хӑйсене тупӑш панӑ чухлӗ ҫеҫ кӑсӑк. Тӗнчери империсене, Раҫҫей патшисене вак халӑхсем нихӑш чухне те тан кирлӗ пулман. Пире хирти ҫум курӑкӗ вырӑнне ҫеҫ хунӑ, хӑвӑртрах кӑкласа ывӑтма хистенӗ, пин тӗрлӗ куланайпа пусахланӑ, «каснӑ та вӑтӑрнӑ». Ертӳлӗхшӗн халӗ те чӑрмавлӑ пӗтме пӗлмен «вак» халӑхсем. Ҫав тутарсемпе чӑвашсем, пушкӑртсемпе ҫармӑссем, чеченсемпе балкарсем пулмасан Мускав улпучӗсемшӗн тӗнче тикӗс пулмалла. Анчах ҫынсем ӑнланаҫҫӗ: нихӑш халӑх та кашкӑр ҫӑварӗнчи путек пек ҫухаласшӑн мар. Чӑваш халӑхӗ тӑхӑр ӗмӗр пусмӑр айӗнче пурӑнса та хӑйӗн ятне-чысне, пурӑнас мехелне ҫухатман. Пурнӑҫ туртӑмӗ пирӗн халӗ те ҫирӗп. Ҫакна чӑваш тип-шар тума пултарни темрен те вирлӗрех кӑтартса тӑрать.

Юлашки ҫулсенче Ҫӗпӗрти, Пушкӑртстанри, Тутарстанри, Мари Элри, Чӗмпӗр, Пенза, Сарӑ ту, Самар, Эрӗнпур, Кемӗр облаҫӗсенчи чӑваш ялӗсене ҫитсе курни тӑрӑх ҫирӗплетсех калама пултаратӑп: халӑхӑмӑр сывӑ та ҫирӗп. Чӑвашпа тутар ялӗсем – Раҫҫей нушисене парӑнман, упранакан тирпейлӗ ялсем. Тӑван чӗлхене вӗрентме пӑрахнӑ, чӑваш йӑли-йӗркине маннӑ ялсем кӑна хӑвӑрт арканса пыраҫҫӗ. Вӗсем чӑвашсен Раҫҫейӗпе те нумай мар. Ҫавӑнпа кутӑн кайнин сӑлтавне тупма ҫӑмӑл: чӑваш йӗркипе пурӑнма пӑрахнӑ ялсем вилме выртнӑ! Ваттисем чӑвашла калаҫсан та – яш-кӗрӗмпе хӗр-упраҫ тӑван тымарсене йӑлтах ҫухатнӑ, тӑван ҫӗр вӗсемшӗн кӗске вӑхӑтрах тиркевлӗ ют вырӑн пулса кайнӑ. Ачисемпе мӑнукӗсем тӑхӑмӗсен ҫӗрӗ ҫине ҫӳреме пӑрахни ытла та килпетсӗр. Чипер ешерсе пыракан Никитино е питӗ паллӑ Канаш (Тюмень облаҫӗ), ӗмӗртен чаплӑ Калмантай (Сарӑ ту облаҫӗ) ялӗсем юлашки чӗрӗк ӗмӗрте ман куҫ умӗнчех япӑхса ларчӗҫ. Кашни кил урлӑ тӑват-пилӗк хупӑ ҫурт, урам урлӑ утма ҫук пиҫен те вӑлтрен. Кунта чӑвашла вӗрентмеҫҫӗ, ниме тумаҫҫӗ, халӑх уявӗсене ирттермеҫҫӗ. Кунта чӑвашлӑх сывлӑшӗ сӳннӗ. Вырӑнти ертӳлӗх ун пек ялсем ҫине алӑ сулнӑ. Эпир те алӑ сулӑпӑр-и?

Самани саккӑрла ҫаптарчӗ пулсан та чӑн чӑвашсем мӑн маҫаксем суйласа илнӗ тулӑх та хитре ҫӗрсене пӑрахса тарман. Ҫурҫӗрте е аякри урӑх вырӑнсенче ӗҫлесех ҫурт-йӗр ҫавӑраҫҫӗ, ача-пӑча ӳстереҫҫӗ. Шкулта чӑваш сӑмахне вӗрентме хистесех пӑрахтарасшӑн пулсан та – пӑрахмаҫҫӗ. Ун пек ялсем – Пушкӑртстанри Кив Ҫеменкке-и вӑл е Тутарстанри Патраклӑпа Чӑваш Майни-и – талпӑнса ҫӗнелеҫҫӗ. Унти культура автономийӗсем хастар. Ыттисем илтнӗ-и Чӑваш наци конгресӗ ҫинчен? Тахҫан илтнӗ. Пенза облаҫӗнчи Кив Энтриел вулавӑшҫи, 36 ҫул чӑваш кӗнекисене, культурине саракан Мария Суконникова съезда чӗнесси шанать. Итӗм Кура ял тӑрӑхне 26 ҫул ертсе пыракан Сергей Фомин, Пушкӑртстанри Федоровка районӗнчи сыватӑш врачӗ Аркадий Русаков ҫыравҫӑ та съездра пуласшӑн. Вӗсем съезда килме делегатсене вырӑнта суйламалли ҫинчен пӗлмеҫҫӗ. Чӗнессе кӗтеҫҫӗ. Калмантай паттӑрӗ Василий Андюков тавра пӗлуҫӗ чӗнессе кӗтмесӗрех Конгресс штабне килсе кайнӑ. Вӑл съезда хатӗрленме тытӑннӑ та ӗнтӗ. Ытти ҫӗрте вара ЧНК ҫинчен е пачах илтмен, е хӑҫан та пулин конгрессменсем пырса каласа парасса ӗмӗтленеҫҫӗ.

Кӗсье инҫе сасӗпе Интернет вӑхӑтӗнче ҫапла пулмалла-и? Ҫук. Кашни киле ҫитмесен те ЧНК сӑмахӗ кашни ял тӑрӑхне, шкула, вулавӑша кунсерен ҫирӗппӗн янӑратса тӑмалла. Кунта нимӗнле чӑрмав та ҫук. Ӗҫе йӗркелесси кӑна.

Малтанхи устав тӑрӑх делегатсен йышӗ кашни съездрах виҫҫӗрен икӗ пайӗ патнелле улшӑнса тӑмаллаччӗ. Юлашки съездсенче делегатсем мар, чӗннӗ тӑвансемпе ӗҫкӗ-ҫикӗ хӑнисем халӑх ячӗпе калаҫрӗҫ,

ЧНК Президиумĕпе Мăн Канаш намăс çак пулăма сирсе ямалăх вăй тупаймарĕç. Капла лару-тăрура Чăваш наци конгресĕн Президиумĕ черетлĕ съезда нацие тивĕçлĕ шайра ирттерме май килтереймĕ.

Çавăнпа ЧНКн 8-мĕш съездне хатĕрлеме йĕркелÿ ушкăнĕ тума ыйтатăп. Унта общество организацийĕсен, культура автономийĕсен, партисен, патшалăхран тивĕçлĕ органсен, çав шутра тулайри чăваш ертÿлĕхĕсен çыннисем, халăх ĕçĕн паллă ĕçченĕсем тата Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн представителĕ пулма тивĕç.

Чăваш наци конгресне йĕркеленĕ чухне 1991–1992 çулсенче республикăн Аслă Канашĕ пысăк ĕç турĕ. Ку хутĕнче те çак ĕçе тытса пыма Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн пуçăнмалла тесе шухăшлатăп. «Эпир общество организацийĕсен ĕçне хутшăнмастпăр» тени Чăваш Енре тÿрре тухмасть. Конгреспа патшалăх ертÿлĕхĕ тăван халăхшăн пĕр йĕрпе, пĕр тĕллевпе ĕçлемелле. Иккĕленни е турткаланса тăни усăллă пулмĕ, сиен кăларма пултарĕ. Ваттисем калашле – тинĕс хумханмасăр тăраймасть. Халăх та çавах. Çавăнпа Патшалăх Канашĕн Председательне Юрий Попова, ЧНК президентне Геннадий Архипова йĕркелÿ комитечĕн ларăвне ним тăхтаса тăмасăр çак уйăхрах палăртма ыйтатăп.

Съезда хатĕрленсе Конгресăн çĕнетнĕ Устав проектне, делегатсем суйламалли йĕркепе квотăна республикăри кашни района, тулайри кашни кĕтесе халех çитермелле – ырăнти пухусенче отчетпа суйлавсем ирттерме вăхăт кирлĕ.

Çав пухусенче суйланă делегатсен тата ЧНК Мăн Канашне кĕртме сĕннĕ çынсен списокне съездчен пĕр-икĕ эрне маларах «Хыпар», «Республика» тата «Чăваш тĕнчи» хаçатсенче пичетлесе кăларма, Интернет сайтне вырнаçтарма, Наци хум сасĕ (радио) урлă пĕлтерме сĕнетĕп.

Съездра йышăнмалли тĕп документсен проекчĕсене малтанах сÿтсе явасси, ырăнсенчен килекен хыпарсене пĕтĕмлетсе тухасси ЧНКра тахçанах йăлана кĕчĕ. Халь тин ăна пăсас çук. Эппин, съездăн кун йĕркине, делегатсен тĕллевĕсене халăх патне съезд уçăличченех çитерме, ĕçлĕ сĕнÿсемпе кăтартусене пичет урлă хыпарласа тăма тивет.

Халăхăмăр шухăшлама пăрахман-ха. Чăмăртанса ĕçлеме, пĕр-пĕрне пулăшса пурăнма пĕлет. Малтанхи съездра йышăннă пекех Чăваш Республикин кашни район тулайри пĕр-пĕр регионпа, кашни ял инçетри ялпа, кашни шкулпа вулавăш аякри шкулпа та вулавăшпа туслă та ĕçлĕ çыхăну йĕркелеччĕр, ăна çулсерен çирĕплетсе, кирлĕлетсе, усăллă туса пыччăр. Чăваш университечĕсен чăваш факультечĕсем тулайри çамрăксемпе ĕçлемен пиркиех факультетсене хупмалла туса хутăмăр. Патшалăх умне ыйтăва тĕрĕс лартман пиркиех Чăваш лицейне хуптартăмăр, пултаруллă ачасен шкулне уçаймарăмăр. ЮНЕСКО палăртнă пекех часрах пĕтсе ларас терĕмĕрши? Çук. Халех вилместпĕр. Пирĕн халăхăн малашлăха утмалли çулĕ йăлтах хупăнман-ха. Тен, съезд умĕн сÿтсе явсан урăхла çул-йĕр те курăнса каймĕ-и? Пĕрле шухăшлама пухăнать съезд, çавăнпа унти шухăшлас ыйтусене малтанах палăртма тăрăшăпăр.

Тĕнчере çын та, халăх та нумай, чăваш – пĕрре. Тĕнчешĕн эпир мулпа е ырлăхпа мар, авалхи тымарлă чăваш пулнипе хаклă.

Çакна ăнланнă халăх Чăваш наци конгресне шанать. Чăвашсен вĕреннĕ çыннисене калатăп: тăван халăх шаннине пирĕн тÿрре кăлармаллах. Аслă асаттемĕр Иван Яковлев сăмахĕсем чĕлхе çине килеççĕ: «Килĕшсе ĕçленĕ ĕç пысăк усăллă – çакна пĕлсе тăрăр... ахальтен анчах ĕçлесен чăн пысăк ĕç те пăрахăçа тухать».

*Виталий СТАНЬЯЛ, ЧНК Мăн Канашĕн пайташĕ.*
*«Хыпар», 25.07.2013. 143№.*

## ЧУВАШСКОМУ НАЦИОНАЛЬНОМУ КОНГРЕССУ ПРЕДРЕКЛИ БОЛЬШИЕ ПЕРЕМЕНЫ

*Руководитель администрации главы Чувашии Александр Иванов провел встречу с рядом руководителей Чувашского национального конгресса, в ходе которой обсуждалось будущее организации. Об этом сообщил «Ирĕклĕ Сăмах» осведомленный источник, близкий к ЧНК.*

На встрече присутствовали министр культуры Чувашии **Вадим Ефимов**, президент ЧНК **Геннадий Архипов** (он весной перенес инфаркт и операцию на сердце и до сих пор находится на больничном), вице-президент Конгресса, гендиректор издательского дома «Хыпар» **Алексей Леонтьев**, председатель исполкома ЧНК **Константин Портнов** и юрист **Николай Лукианов**, возглавлявший в начале 1990-х годов Партию чувашского развития (*Чăваш аталанăвĕн партийĕ*, ЧАП).

При этом на встречу не были приглашены «главный куратор» ЧНК от Минкультуры Михаил Краснов и предприниматель Валерий Клементьев, который исполнял обязанности президента ЧНК во время болезни Архипова и претендует на то, чтобы стать его преемником.

На встрече Александр Иванов подверг резкой критике текущую деятельность ЧНК. Особое внимание он обратил на то, что Конгресс направляет всю свою энергию на фольклорно-развлекательную деятельность, игнорируя политические и экономические вопросы.

По мнению источника «Ирĕклĕ Сăмах», отсутствие на встрече Клементьева и приглашение Лукианова свидетельствует о том, что руководство республики, во-первых, думает о модернизации ЧНК и, во-вторых, де-факто признает Лукианова неформальным лидером чувашского национального движения. Любопытно, что на последнем заседании Большого совета ЧНК журналист Илле Иванов предложил избрать Лукианова исполняющим обязанности председателя Конгресса на срок до 26 октября, когда состоится очередной общий съезд. «Не менее половины зала своим поведением продемонстрировало явную поддержку предложению журналиста, – отметил наш собеседник. – Не исключено, что власти республики видят в качестве возможной кандидатуры на пост президента ЧНК именно кандидатуру Николая Лукианова».

По словам источника, если на съезде 26 октября президентом ЧНК изберут Лукианова, в деятельности Конгресса ожидаемы большие перемены, а вектор его деятельности сменится кардинальным образом.

*«Ирĕклĕ Сăмах», 23.08.2013.*

## ОТКРЫТОЕ ПИСЬМО КАНДИДАТА В ПРЕЗИДЕНТЫ ЧНК НИКОЛАЯ ЛУКИАНОВА К ГЛАВЕ ЧУВАШИИ МИХАИЛУ ИГНАТЬЕВУ

*Главе Чувашской Республики*
*господину Игнатьеву М.В.*
*Копии:*
*Председателю Государственного Совета*
*Чувашской Республики господину Попову Ю.А.*
*Президенту Чувашского национального конгресса*
*господину Архипову Г.Н.*

Уважаемый Михаил Васильевич!

На 26 октября 2013 года намечено проведение очередного, 8-го Съезда Чувашского национального конгресса.

Я имею честь являться одним из инициаторов создания Конгресса, который, как мне представляется, на начальном этапе своей деятельности внес существенный вклад в процесс формирования чувашской нации как нации современного европейского типа, а также в существенное преобразование чувашской государственности и коренное изменение её политических институтов, трансформацию экономических основ народа, повышение статуса чувашского языка и т.д. и т.п. **Однако постепенно, шаг за шагом, ЧНК стал терять позиции ведущей организации и консолидирующей силы чувашской нации и переориентировался на выполнение задач в основном этнокультур-**

**ного характера. Значимость Конгресса как системообразующей силы чувашского народа в настоящее время несущественна.**

Стараясь принимать посильное участие в организации предстоящего Съезда Конгресса, я не могу освободить себя от тревожных мыслей как за нынешнее состояние ЧНК, так и за его будущее. Эти обстоятельства вынуждают меня обратиться к Вам, уважаемый Михаил Васильевич, с данным открытым письмом.

Как мне представляется, сегодня налицо системный кризис не только Чувашского национального конгресса, но и чувашского национального движения в целом. Тому, как мне кажется, есть причины объективного и субъективного характера.

Я понимаю и принимаю, что любое общественное движение носит цикличный, волнообразный характер, оно имеет как периоды подъема, так и периоды спада. Если становление и первые годы функционирования ЧНК были временем расцвета чувашского национально-демократического движения, то в последующем закономерно наступил период его постепенного упадка. Данный процесс носит объективный характер, не зависит от воли и желания даже самих его участников. Нельзя не учитывать и то обстоятельство, что как раз на данный период пришлось переломное время становления рыночных отношений и многие, поначалу активно и осознанно вовлеченные в организацию и деятельность ЧНК, были вынуждены направлять свою энергию на адаптацию к этим отношениям.

Именно поэтому я бы предостерег тех, кто скоропалительно пытается субъектировать данный сложный и мучительный для думающей части чувашского социума процесс и без вдумчивого его анализа искать виноватых в упадке национального движения.

С тех пор, как был создан ЧНК, в чувашском социуме произошли коренные изменения, которые обусловлены событиями, происходящими как в глобализованном мире, так и внутри России. Открытость границ, демократизация общества, денационализация собственности, формирование рыночных отношений, свобода слова, включенность в общемировое информационное пространство – все эти революционные по своей значимости процессы произошли за короткий период существования Конгресса. Смог ли ЧНК адекватно отреагировать на вызовы современного мира и трансформироваться в соответствии с его объективными, порой очень даже жесткими требованиями или же названные процессы проходят вне внимания и функционирования данного института гражданского общества, – вот тот основной вопрос, на который, как мне кажется, должен дать ответ предстоящий съезд. Суровые законы развития современного мира таковы, что очень опасно их не понимать: напротив, нужно соответствующим образом реагировать, гибко приспосабливаясь к изменившимся условиям. Однако Конгресс, двадцать лет тому назад являвшийся авангардом всего чувашского народа, сумевший сконцентрировать в себе наиболее прогрессивные, пассионарно-активные силы общества, в настоящее время перестал быть таковым. Весь смысл предстоящего съезда заключается в том, чтобы постараться вернуть ЧНК былые позиции локомотива чувашского (и не только) социума. Но когда лица из рабочего органа, призванного вести всю предварительную работу по подготовке и проведению съезда, самым серьезным образом заявляют, что основной целью Конгресса является «сохранение этнической самобытности чувашского народа», то невольно закрадываются обоснованные сомнения в том, что предстоящий форум может стать новым значимым этапом в жизни чувашской нации.

Об этом же свидетельствует навязанный Совету Конгресса неизвестно кем составленный перечень организаций, которые наделены правом избрания делегатов на предстоящий съезд. Данный список совершенно не отражает основополагающий принцип, заложенный изначально в первом Уставе организации, согласно которому «ЧНК является высшим представительным собранием чувашской нации». Как я отметил выше, за двадцать лет существования Конгресса чувашский социум претерпел коренные структурные изменения. Это нельзя не учитывать при определении состава субъектов, наделенных правом избрания делегатов на съезд. Из поступившего же на утверждение Совета ЧНК списка видно, что правом избрания делегатов на предстоящий съезд наделены в основной массе организации, представляющие государственные и муниципальные органы, или организации, так или иначе живущие за счет бюджетного финансирования. Вне представительства остались организации, связанные с производством, строительством, обслуживанием, торговлей, сельским хозяйством, а также сфера бизнеса, банковского дела, юридический корпус, спортивные, профсоюзные, общественные и другие организации, которые также являются составной частью чувашской нации.

Таким образом, предстоящий съезд в предложенном составе, к сожалению, вряд ли может претендовать на роль высшего представительного органа чувашского народа, а его легитимность весьма сомнительна, поскольку он не отражает интересы всех слоев нашей нации.

Кроме того, вопреки требованию Устава, до настоящего времени не определена повестка дня съезда, без которой он лишен смысла.

Думается, что кризисные процессы, происходящие в ЧНК, в немалой степени объясняются тем, что само Чувашское государство отстранилось от активного участия в деятельности данной организации. Хочется напомнить, что Конгресс на начальном этапе своего функционирования был столь авторитетной организацией в том числе потому, что он был создан в результате тесного партнерства государства и общества. Учредительный съезд Конгресса был созван и проведен на основании Постановления Президиума Верховного Совета Чувашской АССР от 28 мая 1992 года.

Представляется, что именно Чувашское государство, не вмешиваясь во внутренние дела ЧНК, должно было активно способствовать его руководящему органу в подготовке съезда и привлечь к этой работе профильные министерства, научные и образовательные институты, авторитетных ученых, признанных государством деятелей науки и искусства, общепризнанных формальных и неформальных лидеров национального движения, руководителей предприятий, успешных предпринимателей и т.д.

Следовательно, без тщательной и вдумчивой подготовительной работы предстоящий Съезд ЧНК может стать и завершающим. Но мы не должны этого допустить, поскольку в данное время нет иной организации, которая могла бы заменить его в сложной структуре тех организаций и течений, которые в своей совокупности и составляют как национальное движение в частности, так и саму нацию вообще.

Необходимость сохранения и обновления ЧНК, по моему мнению, объясняется, **во-первых**, тем, что в настоящее время само Чувашское государство не обладает той степенью суверенитета, которая позволила бы ему встать на уровень развитых государств и стать субъектом международного права. Следовательно, чувашская нация должна иметь организацию такого уровня авторитета, которая могла бы достойно представлять её интересы в общепризнанных международных межправительственных и неправительственных организациях как их полноправный субъект. Мы как нация должны быть узнаваемы мировым сообществом. В настоящее же время я не могу представить себе в этой роли иную организацию, кроме как Чувашский национальный Конгресс.

**Во-вторых,** ЧНК мог бы выступить в роли органа, координирующего деятельность сложной системы организаций, совокупность которых я называю чувашским национальным движением. Составной частью этого движения является и само Чувашское государство. Если двадцать лет назад Конгресс выступал в роли единственной доминирующей организации, концентрированно представляющей интересы всей чувашской нации, то сегодня ЧНК объективно не может выполнять данную функцию. Это объясняется тем, что чувашская нация, как и любой социум, с течением времени начинает дробиться,

структурироваться по разного рода интересам, предпочтениям. И это нормально. А координировать их деятельность, систематизировать сложноструктурное образование, определенным образом придавать их деятельности целенаправленный характер – эту сложную задачу мог бы взять на себя именно ЧНК.

**В-третьих,** ЧНК в пределах административной территории Республики мог бы взять на себя роль стабилизирующего органа, координирующего деятельность разного рода общественных движений, структурных подразделений политических партий и иных организаций, защищать права и интересы не только титульной нации, но и представителей национальных меньшинств – русских, татар, мари, эрзя, мокша и др.

**В-четвертых,** ЧНК, как мне представляется, должен являться ведущей силой, обеспечивающей сохранение и развитие самого Чувашского государства, которое, в свою очередь, призвано выступить гарантом сохранения и развития чувашской нации. Конгресс никаким образом не может быть противником или оппонентом государства, а наоборот, он должен быть его опорой, надежным союзником и партнером. Наведение порядка в Чувашской Республике, защита и укрепление его политических, экономических, культурных и других основ является святой обязанностью ЧНК.

**В-пятых,** ЧНК является единственной организацией, полноценно представляющей интересы чувашской нации в отношениях с теми российскими организациями, которые выражают интересы других коренных наций и народов.

**В-шестых,** ЧНК совместно с Чувашским государством мог бы взять на себя и расширение информационного пространства чувашской нации как на территории России, так и в глобализованном мире.

**В-седьмых,** одной из принципиальных обязанностей ЧНК является сохранение и развитие чувашского языка, расширение сферы его применения, повышение его статуса. Необходимо укрепить роль чувашского языка в Чувашской Республике не только как информационного фактора, не только как фактора свободы («утăм хыççăн утăм ирĕклĕх енне»), но и как административно-карьерного и бизнес-экономического фактора. Думается также, что необходимо поднять статус нашего родного чувашского языка до уровня одного из официальных языков Российской Федерации с вытекающими отсюда правовыми, организационными, финансовыми, кадровыми и иными последствиями.

**В-восьмых**, следует высоко поднять статус Конгресса как носителя и выразителя морального, духовного авторитета нации. А для этого, как мною уже указывалось, к его работе следует вовлечь действительно авторитетных, заслуженных людей нашего народа. Кроме того, сама деятельность ЧНК должна соответствовать своему изначально заявленному предназначению.

Я не разделяю мнения тех, кто утверждает, что государство заинтересовано не в сильном ЧНК, а, наоборот, в слабом, «карманном» Конгрессе, ибо считаю, что сильный Конгресс есть сильная Республика, а сильная Республика есть сильный Конгресс.

Моя позиция, как мне представляется, в полной мере согласовывается с положениями Указа Президента Российской Федерации Путина В.В. от 19.12.2012 года за №1666 «О стратегии государственной национальной политики Российской Федерации на период до 2025 года». Названным Указом органам власти регионов и органам местного самоуправления рекомендовано руководствоваться положениями Стратегии при осуществлении ими своей деятельности в этой сфере.

Именно исходя из этого я обращаюсь к Вам, уважаемый Михаил Васильевич, как к Главе Чувашской Республики, с просьбой сделать все зависящее от Вас, чтобы предстоящий 8-й Съезд Чувашского национального конгресса стал действительно знаковым событием в жизни чувашской нации.

С глубоким к Вам уважением,
член Совета ЧНК Лукианов Н.
23.09.2013.

## КАНАШСКОЕ ЗЕМЛЯЧЕСТВО ВЫДВИНЕТ НИКОЛАЯ ЛУКИАНОВА В ПРЕЗИДЕНТЫ ЧНК

*Землячество уроженцев Канашского района «Канашсем» провело заседание в преддверии общего съезда Чувашского национального конгресса, на котором будет избран новый президент организации.*

По данным «Ирĕклĕ Сăмах», с резкой критикой текущей деятельности ЧНК выступил на заседании председатель землячества писатель **Анатолий Кибеч**. Он напомнил, что Конгресс был организован в 1992 году как высший представительный орган чувашского народа. По словам писателя, на начальном этапе своей деятельности Конгресс вполне соответствовал своему предназначению и внес существенный вклад в развитие чувашской нации, повышение её авторитета даже на международном уровне.

«Однако в последние годы ЧНК утратил свои прежние позиции, утерял былой моральный авторитет, превратившись в заурядный клуб по организации разного рода концертов и конкурсов красоты», – сказал Кибеч.

По словам писателя, «в народе зреет недовольство современным состоянием Конгресса, так что наступило время коренным образом преобразовать ЧНК и наладить его деятельность в соответствии с требованиями современности». Это мнение нашло поддержку у остальных членов землячества, и в протокол заседания попала запись: «Деятельность Чувашского национального конгресса считать неудовлетворительной».

Далее, на заседании прозвучало пожелание, чтобы на грядущем съезде президентом Конгресса был избран «человек авторитетный, уважаемый народом, морально устойчивый и политически грамотный». В связи с этим землячество решило рекомендовать к избранию одного из идеологов создания ЧНК, экс-председателя Партии чувашского развития **Николая Лукианова**.

Кроме того, землячество избрало своих делегатов на съезд. Помимо Лукианова и Кибеча, ими стали предприниматель Юрий Тарасов и депутат Госсовета Чувашии Валерий Павлов.

В ближайшее время «Канашсем» намерены обратиться ко всем районным землячествам Чувашии с просьбой поддержать их инициативу по реформированию ЧНК.

Чувашский национальный Конгресс с 1997 года возглавляет Геннадий Архипов. По всей видимости, в качестве его преемника на грядущем съезде попытается избраться бизнесмен и певец Валерий Клементьев.

*«Ирĕклĕ Сăмах», 27.09.2013.*

## СОЮЗУ «СУВАР» НЕ РАЗРЕШИЛИ ВЫДВИНУТЬ ДЕЛЕГАТОВ НА СЪЕЗД ЧНК

*Союзу чувашской молодежи «Сувар» отказали в праве выдвинуть делегатов на съезд Чувашского национального конгресса (ЧНК), который состоится 26 октября в Чебоксарах. Об этом сообщил интернет-газете «Ирĕклĕ Сĕмах» почетный эльдебер союза Олег Цыпленков.*

По словам Цыпленкова, недавно он решил проконсультироваться по поводу выдвижения делегатов с членом Президиума ЧНК Михаилом Красновым. Тот заявил, что «Сувар» не имеет такого права, потому что, во-первых, не прошел перерегистрацию в Минюсте, а во-вторых, отсутствует в уже согласованном списке организаций, выдвигающих делегатов на съезд.

Несмотря на это, Олег Цыпленков намерен добиваться того, чтобы члены «Сувар» могли стать делегатами съезда.

Напомним, что Чувашский национальный Конгресс позиционируется как организация, выражающая интересы всего чувашского народа. Однако многие наблюдатели считают, что в своем нынешнем виде Конгресс не отвечает заявленным целям. ЧНК неоднократно критико-

вали за то, что он добровольно устранился от решения политических задач и сосредоточился на проведении развлекательных мероприятий.

На съезде 26 октября должны состояться выборы президента Конгресса (последние 16 лет им руководил Геннадий Архипов). На пост нового президента претендует, в частности, сторонник реформ Николай Лукианов, который был одним из идеологов ЧНК в начале 1990-х годов.

25 сентября Лукианов опубликовал на сайте «Ирĕклĕ Сăмах» открытое письмо к главе Чувашии Михаилу Игнатьеву, в котором изложил свое мнение по поводу грядущего съезда ЧНК. Среди прочего, Лукианов отметил и тот факт, что список объединений, имеющих право выдвигать делегатов на съезд, «составлен неизвестно кем» и «навязан Совету Конгресса». Между тем многие организации, находящиеся на ведущих позициях в чувашском национальном движении, не могут выдвинуть своих представителей на съезд.

*«Ирĕклĕ Сăмах», 27.09.2013.*

## ЧУВАШСКИЙ НАЦИОНАЛЬНЫЙ КОНГРЕСС СТРЕМИТСЯ В ПОЛИТИКУ

*Накануне съезда ЧНК между его неформальными лидерами и аппаратом главы Чувашии обострились противоречия.*

Предстоящий съезд некогда очень влиятельного и мощного, а ныне пребывающего в летаргическом сне, Чувашского национального конгресса таит в себе немалую интригу. Она заключается не только в неизбежном кадровом вопросе, хотя борьба за пост президента этой межрегиональной общественной организации уже сейчас ведется нешуточная. Наблюдатели предрекают, что некоторые влиятельные деятели ЧНК предпримут решительные шаги для того, чтобы Конгресс вновь стал политической силой. Многие помнят, как во времена оные, лет двадцать назад, на своих форумах его делегаты требовали объявить чувашский язык единственным государственным языком на территории республики, а Чебоксары именовать исключительно по-чувашски – Шупашкаром. Предстоящему съезду уделяется немалое внимание в коридорах власти Чувашии.

«Совещания по подготовке мероприятия впервые проходят в кабинете руководителя администрации главы республики **Александра Иванова**, - рассказал **«Правде ПФО»** источник в ЧНК. – Основной камень преткновения – это кандидатура на пост президента ЧНК. Многолетний лидер конгресса **Геннадий Архипов** по ряду причин таковым является только на бумаге: он по состоянию здоровья уже не может выполнять эти функции. Власть пытается навязать в президенты ЧНК певца и предпринимателя из Саратовской области, но в республике хватает и доморощенных кандидатов».

Одним из таковых позиционирует себя юрист **Николай Лукианов**. Он посчитал необходимым направить главе Чувашии **Михаилу Игнатьеву** открытое письмо, в котором изложил свое виденье на перспективы дальнейшего функционирования ЧНК.

Надо полагать, что сентябрьские тезисы **Лукианова** (а он призывает превратить ЧНК в орган, координирующий деятельность общественных движений, структурных подразделений политических партий и иных организаций, и вообще стать «ведущей силой, обеспечивающей сохранение и развитие Чувашского государства») не шокировали республиканские власти. «Они не против использовать Конгресс в политических целях, когда им это нужно, – заявил **«Правде ПФО»** источник в ЧНК. – Не за горами выборы главы республики, поэтому с нами и заигрывают. Игнатьев явно не станет возражать, чтобы наша организация выступила в поддержку его кандидатуры. Но вместе с тем повышать статус ЧНК им не хочется».

Действительно, официальным лицам республики не привыкать слышать от активистов конгресса различные радикальные предложения. В Интернете гуляет ролик, заснятый на одном из заседаний президиума ЧНК, где обсуждались итоги всероссийской переписи населения. А цифры оказались очень неприятными: зафиксировано резкое снижение чувашского населения в целом по стране.

«Исходя из этих итогов, глава Чувашии Михаил Игнатьев и президент ЧНК Геннадий Архипов должны сделать себе харакири, – заявил на заседании журналист **Илья Иванов.** – А все остальные здесь присутствующие – застрелиться».

Только не следует подозревать журналиста в предвзятом отношении к главе республики. Сейчас в Моргаушском райсуде проходит судебный процесс по обвинению **Иванова** в экстремизме. И судят его не за призыв к публичному вспарыванию живота, а за статью, опубликованную в одной из бесплатных газет. Рассмотрение дела затягивается, **Иванов** требует, чтобы судопроизводство шло на чувашском языке, повестки, написанные по-русски, он решительно отвергает. «Обвинение надуманно. В своей статье **Илле Иванов** всего лишь очень эмоционально защищает «эльчибея» (правильно: эльтебера. – А.Л.) (президента) **Михаила Игнатьева** от обвинения в национализме, раздававшемся как в официальных источниках, так и в блогосфере, – заявил **«Правде ПФО»** блогер и общественный деятель **Станислав Александров (Убасси)**. – Через всю его статью «красной нитью» проходит тема боли за судьбу чувашского языка».

Как бы там ни было, но национальный вопрос в республике становится все менее простым и понятным. Недавно вашингтонский политолог и журналист **Пол Гобл** разместил на сайте Джеймстаунского фонда **свою статью, посвященную Чувашии**. Будь она напечатана в республике, Моргаушский райсуд точно бы влепил автору срок по полной программе за экстремизм.

Автор считает, что республики и регионы РФ могут вот-вот начать новый «парад суверенитетов». И на этот раз он, кажется, зарождается в тех местах, где этого меньше всего ожидали. «Но, учитывая усиливающуюся связь между должностными лицами и активистами в республиках, краях и областях Российской Федерации, такое мышление может оказаться роковой ошибкой», – замечает **Пол Гобл**. И самый интригующий «призыв» к такому развитию событий, по его мнению, идет из Чувашии, которая становятся все более активной. «В Чебоксарах состоялся митинг в знак протеста против утраты республикой государственности. На митинге прозвучали требования вернуть Чувашии утерянную государственность и пост президента. Представители Чувашской Республики приняли участие в конференции «Актуальные проблемы диалектологии языков народов России». Они предложили принять резолюцию, заявив, что «если процесс потери интереса к языку своего народа будет развиваться, то это приведет к исчезновению не только языков, но и ряда народов РФ». Остальные участники конференции поддержали резолюцию, а также выразили намерение обратиться в Госдуму РФ с просьбой ускорить ратификацию Европейской хартии региональных языков и языков меньшинств.

**Пол Гобл** приходит к заключению, что, несмотря на то, что Чувашия все еще находится под контролем Москвы, «она может сыграть ведущую роль в запуске «парада суверенитетов».

Ладно, статью вашингтонского публициста можно списать на происки ЦРУ. Но неделю назад в Общественной палате РФ было озвучено социологическое исследование «Национальный вопрос в российской общественно-политической жизни».

Из него следует, что 45 процентов опрошенных «титульных» жителей Чувашии и некоторых других соседних республик утвердительно ответили на вопрос «Могли бы Вы проголосовать за политическую партию, которая главной целью ставит защиту интересов людей вашей национальности?»

Вроде бы, предстоящий съезд ЧНК должен дать ответ на многие актуальные вопросы. «Однако я ожидаю это событие без радужного настроения, – заявил **«Правде ПФО»** аксакал конгресса **Виталий Станьял.** – Подготовка к его проведению ведется кулуарно, вызывает

недоумение подбор делегатов, повестка дня до сих пор не определена. Изменения в уставе вообще выглядят странно: Чувашский национальный Конгресс по своему статусу низведен до какой-нибудь кролиководческой организации, введены членские взносы, чего никогда не было раньше».

Александр БЕЛОВ.
*«Правда ПФО», 2.10.2013.*

## ПОЯВИЛАСЬ ЕЩЕ ОДНА КАНДИДАТУРА НА ПОСТ ПРЕЗИДЕНТА ЧНК

*За пост президента Чувашского национального конгресса может побороться председатель исполкома этой организации Константин Портнов. Такую информацию передал «Ирĕклĕ Сăмах» независимый журналист Тимер Акташ, ссылаясь на «сообщение из кулуаров ЧНК».*

Согласно дошедшим до журналиста сведениям, Портнова «не против видеть президентом ЧНК» его земляки из Яльчикского района, а также «некоторые учителя и чиновники».

Константин Портнов родился в 1956 году в селе Янтиково (Аслă Пăла Тимеш) Яльчикского района. Он считается членом команды Геннадия Архипова, который руководил Конгрессом с 1997 года. По данным Тимера Акташа, вместе с Архиповым Портнов учился на факультете чувашской филологии ЧГУ, а затем работал в редакции газеты «Коммунизм ялавĕ» (ныне «Хыпар»). В последние годы Портнов выполнял обязанности пресс-секретаря ЧНК, редактировал учрежденную [ИД «Хыпар» и] Конгрессом газету «Чăваш тĕнчи».

Ранее стало известно о еще четырех возможных кандидатах на пост руководителя Чувашского национального конгресса. Это певец и предприниматель Валерий Клементьев, который стал и.о. президента ЧНК во время болезни Архипова; юрист, один из идеологов создания ЧНК в начале 1990-х годов и экс-председатель «Партии чувашского развития» Николай Лукианов; председатель Чувашской национально-культурной автономии Татарстана Константин Яковлев; депутат Госсовета Чувашии Николай Угаслов.

Съезд ЧНК, на котором будет избран президент Конгресса, состоится в Чебоксарах 26 октября.

*«Ирĕклĕ Сăмах», 8.10.2013.*

## СРЕДИ КАНДИДАТОВ В ПРЕЗИДЕНТЫ ЧНК – НИКОЛАЙ УГАСЛОВ

*К настоящему времени можно говорить о четырех претендентах на пост президента Чувашского национального конгресса – это певец Валерий Клементьев, экс-председатель Партии чувашского развития Николай Лукианов, депутат Госсовета ЧР Николай Угаслов и председатель Чувашской национально-культурной автономии Татарстана Константин Яковлев. Такую информацию сообщил интернет-газете «Ирĕклĕ Сăмах» журналист Тимер Акташ, ссылаясь на члена оргкомитета 8-го съезда ЧНК Тимера Тяпкина.*

Напомним, что Валерий Клементьев занимает сейчас пост исполняющего обязанности президента ЧНК.

Юрист Николай Лукианов – один из идеологов создания ЧНК в начале 1990-х годов. Он будет выдвинут в президенты Конгресса Канашским землячеством. Кандидатуру Лукианова поддерживают многие организации, активно работающие в рамках чувашского национального движения, однако существуют некоторые проблемы с тем, чтобы эти организации получили право голоса на съезде. В конце сентября Лукианов изложил тезисы своей программы в открытом письме, опубликованном на сайте «Ирĕклĕ Сăмах».

О том, что на президентскую должность претендуют Угаслов и Яковлев, в СМИ ранее не сообщалось. Николай Угаслов – директор строительной фирмы «ТУС», депутат Госсовета Чувашии от партии «Единая Россия». Кроме того, он занимает пост вице-президента ЧНК и является одним из основных его спонсоров (в частности, Угаслов финансирует песенный фестиваль «Кĕмĕл сасă»).

Педагог Константин Яковлев возглавляет Чувашскую национально-культурную автономию Татарстана с 2001 года. Автономия занимается, в основном, проведением чувашских праздников и конкурсов, проводит фестивали национальной песни и творческие вечера.

По словам Тимера Тяпкина, от имени Круглого стола ЧНК он участвовал в консультациях с представителями властей Чувашии. Те пообещали проявить «демократический подход» и «не навязывать никакую кандидатуру нового руководителя ЧНК».

*«Ирĕклĕ Сăмах», 8.10.2013.*

## «ТУР ЛАШИНЕ КӲЛМЕ ПĔЛТĔМĔР...»

*Чăваш наци конгресĕн VIII Аслă пухăвĕ тăван халăх хастарĕсене Шупашкара пуçтариччен шутлă кунсем юлчĕç. Ун умĕн эпир ЧНК пĕрремĕш вице-президенчĕпе, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх уииверситечĕн профессорĕпе* ***Владимир Ивановпа*** *курса каласрăмăр.*

**– Эсир, хисеплĕ вице-президент, хăш вăхăтран пуçласа Чăваш наци конгресĕн ĕçне хутшăнма тытăннă?**

– Наци ыйтавĕ чăвашсене нихăçан та канлĕх паман, мĕншĕн тесен пирĕн несĕлсем яланах ирĕклĕ пулма ĕмĕтленнĕ, анчах та тĕллеве пурнăçлама чăрмавсем тупăнсах тăнă. 1992 çултанпа кăна чăваш хастарĕсемпе юнашар утнă тени вырăнлах мар. Студентсем тахçантанпах Хусанта, Мускавра, Ленинградра, Шупашкарта е ытти хулара тăван чĕлхепе калаçса чăваш аваллăхĕ, культури, йăли-йĕрки пирки пупленĕ, тавлашнă, савăннă, юрă юрланă, пĕр ыйту хуравне шыранă: мĕн тумалла ытти халăхпа пур енчен те тан пулмашкăн? Тĕнчен пĕрремĕш е иккĕмĕш вăрçисенче тыткăна лексен тамăкра та пĕрлешме тăрăшнă чăвашсем – пĕр чĕлхеллĕ пулма.

Самана ыйтнипе, мăн асаттесен ĕмĕтне пурнăça кĕртсе чăваш хастарĕсем 20 çул каялла юпа уйăхĕнче хăйсене асăнмалăх юпа-палăк лартнă, палăкне Чăваш наци конгресĕ ят панă. Çав юпа тавра икĕ миллионлă чăваш миçе хутчен карталанса юрламан-ши – Сарă ту, Самар, Чĕмпĕр, Хусан, Ĕпхӳ, Чул хула енче тата ытти тăрăхра.

ЧНКн Аслă пухăвĕ иккĕмĕш президента суйланă хыççăн унăн ĕçтешĕсен йышне кĕртсен, вице-президент ятне илнĕ хыççăн кăна хастар чăвашсемпе пĕр ретре пулнă тени те вырăнлă мар, мĕншĕн тесен никам та президентшăн кăна тăрăшмасть. Эпир пурте чăваш халăхĕшĕн, унăн Конгресĕшĕн май пур таран тăрăшма хатĕр пулнă, пулăпăр та, кама суйлĕ Аслă пуху ертӳçе – унпа пĕрле пулăпар, Конгресс ăçта вырнаçнине манмăпăр; унта Чăваш халăх çурчĕ тесе çырни аякранах курăнса тăрать. Унта кĕме чăваш чĕлхи кăна кирлĕ, вăл – чи кирлĕ документ, алăкĕсем яланах уçă, сыхлавçăсем çук, кашни чăваш хăйĕн шухăшне пĕлтерме ирĕклĕ, чун ыратăвне калаçса çăмăллатма пултарать, пĕр шухăшлă ентешне тупĕ.

**– Эсир Конгресс умĕнче хăш енĕпе чи-чи явапли?**

– Залра пухăннисем, урамри – ĕçри чăвашсем мĕншĕн явапла, çавăншăнах эпир те явапла; çитĕнӳсем пирки те, çитменлĕхсем пирки те вице-президент тивĕçне пурнăçлама Конгресс шанса панă тăк – пĕчĕк утăмсемпе кăна савăнма пултаратпăр: пуçа çĕмĕрет ялан йывăр пĕр шухăш – мĕншĕн хухать чăваш йышĕ? 200 пин çынна çити çухални, чăваша хайне, уйрăмах чĕлхине хисеплесси чакни, культурине пăрахăçласа пыни, йăли-йĕркине сцена çинче е хаçатра кăна тытса пыни... Çак çитменлĕхсене тытса чарма çук пулсан та – кашни утăмрах хамăр пĕлнĕ пек тăрăшкаланă. Çухату ытла та пысăккине шута илсе пирĕн пĕрле каçару ыйтмаллах. Педагогсен халалĕ çапла-çке: суд залне хамăр айăпа туйса кĕмелле.

**–Хăшĕсене асăннă пулăттăр?**

– Калăпăр: сире илемлĕ, сăн ӳкерчĕксемпе пуянлатнă хаклă кĕнеке парнелерĕмĕр. Анчах та вăл чăваш чĕлхипе, эппин, чĕлхе çителĕклĕ маррипе чухăн, кĕнеке чăвашлăха çителĕклĕ вĕрентмест.

**–Кам айăплă?**

– Иванов та, хăй вĕт редколлеги членĕ. ЧНК президенчĕ тĕрлĕ организацие çырнă хутсем пĕтĕмĕшле илсен – чăвашла мар, ентешлĕхсем çинчен информаци – чăвашла мар, кĕскен каласан – чăваш чĕлхи хуçаланмасть. Мĕншĕн? Енчен те чăвашла кăна çырсан – хăшĕ-пĕри чăвашла ăнланманнисем те пур вĕт. Тĕрлĕ организацие чăвашла çырсан каллех калаçу тапранать – куçарса парăр пурте пĕлекен чĕлхепе. Шăнкăравласан та çав хуравах илтетпĕр. Сăлтавĕ паллă – Чĕлхесем çинчен калакан саккуна пурнăçа кĕртекенсем сахал. Наци конгресĕ ку ыйтупа тăтăшах сĕнÿсем тăратать, анчах пурнăçа кĕртме тăрăшакансем çукпа пĕрех. Хула, ял, республика шайĕнче ларусем, йышăнусем, протоколсем чăвашла çырни сайра. Чиновниксене вырăс чĕлхипе çырса ĕçлеме çăмăлрах, вĕсем ăнланасшăнах мар çав – чĕлхе çук пулсан халăхĕ те, республики те, министрĕ те фикци кăна. Ку енĕпе Конгресс пур ертÿçĕпе те пĕр чĕлхе тупаймарĕ. Патшалăх Канашĕн ларăвĕнче ЧНК президенчĕ чăвашла сăмах каланă хыççăн епле кăшкăрашу тапранчĕ – илтрĕмĕр, вуларăмар, куртăмăр.

Тепĕр яваплăх: пирĕн тĕп хула чăвашла çырма пăрахрĕ, хула урамĕ чăваш чĕлхине вырăн памасть, чăваш сăмахне шыраса тупма хĕн. Шурă Шупашкар илемлĕ, урамĕсене чăваш таса тытать, чечексем ÿстерсе илем кÿрет, анчах та реклами чăвашла «калаçмасть». Пуян хуçасене чăваш чĕлхи кирлĕ мар, вĕсен тĕллевĕ паллă – укçа. Укçи вара усала вĕрентет: укçа калаçнă чухне музăсем шăп тăраççĕ, ăста ылтăн – унта тĕрĕслĕх пĕтет. Ылтăн çути чĕрене суккăр тунине хамăр куçпа хамăр куратпăр: пин çула çитекен хулана укçалла 550 çулта тесе ĕнентереççĕ. Кун пирки ЧНК нихăçан та шăп ларман, анчах унăн чĕлхи кăна пур, укçи çукпа пĕрех. Ял ячĕсем пирки те сахал мар кĕрленĕ: Буяново, Балдаево, Алгаши, Ахпердино, Ишаки, Олух (Шумшеваши), Мочеи тата ытти мăшкăл ятсем илемлĕ ялсене пама укçа пулнă, ырă ятсене каялла тавăрма укçа çук. Чиновниксен чĕрисенче чăваш чунĕ вăрантăрччĕ. Историе хисеплени, чĕлхене хаклани, халăхăн кăмăлне туйни кирлĕ. Ку ыйтусемпе Наци конгресĕ ÿлĕм те шавлама чарăнмĕ. Анчах та татса пама администрацин кăна вăй пур. Пирĕн каллех ларусенче, пухусенче, уявсенче, Акатуйсенче калаçнипех, çырнипех çырлахма тивет.

**– Пирĕн шухăшсем ирĕклĕ – никам та шухăшлама чарас çук...**

– Калаçнă чух вара асарханулларах пулма пире ваттисем вĕрентсе хăварнă: калаçнă чухне лайăхрах шухăшла, калаçса ларнипе карта тытăнмасть, ĕç малалла шумасть тенĕ. Çапах та калаçнăçем калаçăнать-ха. Çырнă чухне вара татах тĕплĕнрех шухăшлама лекет, мĕншĕн тесен çырнă сăмаха касса пăрахма май çук. Çавăнпа та Конгресс радиопа, телекуравпа, пухусемпе, тĕл пулусемпе усă курса нумай калаçать, çырать, мĕн калаçнине «Хыпар» хаçат пичетлесех тăрать. «Чăваш тĕнчине» те сăмах парать, чару çук. Пурнăçласси вара Шупашкартан кăна килмест иккен: вулар-ха Патшалăх Канашĕн кун йĕркине – унта ултă ыйтуран тăваттăшĕ йышăннă хушу çумне хушмалли пирки пулса тухать. Мĕншĕнни паллă – вертикаль вăйĕ пусмăрлать, кунĕн-çĕрĕн çĕнĕлĕх ырать, пире пурнăçлама хушать, хамăрпа хамăр хуçа марри пĕтерет, укçи пĕтĕмпех – центр кĕсйинче.

**– Хăнана çÿреме, юрласа-ташласа пурăнма, ĕçсе-çисе пурăнма тăрăшать Конгресс Президиумĕ текенсем те тупăнаççĕ...**

– Конгресс ĕçтешĕсем уявсене, пин çынна пухакан концертсене, юбилейсене хырăм ыйтăвĕсене татса пама мар çÿреççĕ, чăваша пĕрлештерессишĕн – вĕсен тĕп тĕллевĕ. Пĕр чĕлхеллĕ пуласси, пĕрле юрласси, культурăна упрасси пĕрремĕш вырăнта тăрать. Чăваш йывăр самантра та юрласа, калаçса чунне уçни паллă. Çавăнпа та юрăçсене тав сăмахĕ каламаллах – «Чăваш пикине», «Кĕмĕл сасса» ирттернĕшĕн те, Акатуйсене те, Чăваш халăх çурчĕ умне халăха пухса пĕрле юрланăшăн, ташланăшăн та сăмахланăшăн тиркени вырăнсăр, унта никам та укçа тума çÿремен. Ку йăла-йĕркене малалла та упрамалла.

**– ЧНКн чи пысăк çитĕнĕвĕсем пирки илтес килет.**

– Нумай калаçас кăмăл та çук, сăмах та кăларас килмест: Раççейре ĕмĕр-ĕмĕр наци ыйтăвне татса пама ĕмĕтленнĕ, паян та чи çивĕч ыйту шутланать. Наци конгресне çуратни чи пысăк телей тенĕ пулăттăм. Конгресс пĕр пукан çинче ларатчĕ, кайран пÿлĕмлĕ пулчĕ. Ура çине тăрсан 42000 чăваша вăратса Чăваш халăх çурчĕ йĕркелерĕмĕр. 83 регионта чăваш автономийĕ уçса, вĕсене пĕрлештерсе тăни мĕнрен япăх? Патриотсен йышĕ ÿсни, темĕн те пĕлекен, ширакан, тупакан, аваллăха упрама тăрăшакансем пурри кăмăла çĕклет.

**– Чи çивĕч ыйтусем?**

– Ытти халăх йыхравĕ – ирĕклĕх, пĕр танлăх, тăванлăх. Урăх нимĕн те кирлĕ мар. Ытти веçех пур. Чăваш Республики чăвашăнах пултăр, тĕнчери йăхташсемшĕн чăвашлăх тĕслĕхĕ те, килĕ те. Тур лашине кÿлме пĕлтĕмĕр, эппин, Конгреса пăхма та пĕлĕпĕр, унсăрăн çулне çухатма пултарать. Ăна упрани хамăра упрани пултăр.

Надежда СМИРНОВА калаçнă.
*«Хыпар», 12.10.2013, 196–197№.*

## «ПИРТЕН ПУЯННИ ТЕ ПУЛМĔ»

**Вячеслав Оринов** – *Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ. Иртнĕ кĕркуннеренпе. Пултарулăх ĕçĕшĕн яваплă çын. Тĕрĕссипе вара Вячеслав Николаевич хăйĕн ĕмĕрне чăвашлăхла çыхăнтарнă тесен те йăнăш пулмĕ. Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче артистра, режиссерта, илемлĕх ертÿçинче 30 çула яхăн ĕçленĕ тапхăр çак енĕпе палăрса тăрать.*

– Манăн пурнăç ахаль иртмерĕ, – çапла пуçларĕ хăйĕн сăмахне Вячеслав Оринов. – Çамрăксен театрĕнче 70 яхăн спектакль лартнă. Тĕллевĕм пархатарлăччĕ: чăваш театрĕсене çĕнĕ сывлăш кĕртес тени тĕп вырăнта пулнă. Маншăн тĕнче шайĕнчи драматурги – Антон Чехов ĕçĕсем. Ун пултарулăхĕ патне çитни – çитĕнÿ. Эпĕ тăван театрта лартнă юлашки спектакльсем – «Чие сачĕ» тата «Айтар». Унта хамăн ăшра мĕн пуррине уçса пама тăрăшнă. «Айтар» паян та репертуарта пур.

Пурнăç тикĕс килмест, кĕтменлĕхсем сиксе тухаççĕ. Шăпах çавăн пек пăрăнчăксемшĕн халĕ савăнатăп та. Театртан пăрса яракансем хамра мĕн пуррине уçса пама пулăшрĕç.

**– Мĕнре çав çĕнĕлĕх?**

– Театртан кайсанах Мускава чĕнсе илчĕç. Унта юлашки çулсенче 50 ытла пысăк мероприяти йĕркеленĕ. Акатуйран пуçласа халăх никĕсĕ çинчи ытти уяв. Çак ĕçе паян та туса пыратăп. Çывăх вăхăтрах Тушинăри «Красный Октябрь» керменте Кĕр сăри йĕркелĕпĕр.

Мускав, çавăн пекех Раççей федераци чăваш наци культура автономийĕсен илемлĕх ертÿçи пулнă май ытти регионта та тухса çÿреме тивет. Сăмахран, Тутарстанра çулленех Уяв иртет. Ăна виçĕ çул манăн сценарипе хатĕрленĕ.

Уява пуçласа ЧНК президенчĕ Геннадий Архипов илсе кайнă делегаципе лекнĕччĕ.

**– Вячеслав Николаевич, эсир – кино ÿкерес енĕпе те палăрнă çын...**

– Чăваш Енре çак ĕç – пушă вырăн. И. Максимов-Кошкинский хыççăн ку енĕпе тĕплĕн ĕçлемен. Тĕрĕссипе, вăл маншăн нихăçан та ют пулман. Театрта чухнех Чăваш телекуравĕпе пĕрле 10 ытла фильм ÿкернĕччĕ.

Раççей Президенчĕн грантне тивĕçнĕ хыççăн çак ĕçе çĕнĕрен тапратса ятăм, тивĕçлĕ оборудовани туянтăм, «Орион» студи йĕркелерĕм. Пурĕ 16 фильм кăларнă.

**– Вĕсене пысăк экран çинче пăхма пулĕ-и?**

– «Чăвашкино» студине çĕнĕрен чĕртсе ярас шухăша тÿре-шарана витерейменрĕм. Ку енĕпе уйрăмшарăн тăрăшакан ушкăнсем пур-ха. Шупашкарта миçемĕш çул ĕнтĕ сахал йышлă халăхсен кинофестивалĕ иртет. Унта тутарсем, пушкăртсем, якутсем хутшăнаççĕ, йĕркелÿçĕсем хăйсем – çук. Кÿршĕсене патшалăх шайĕпе пулăшса пыраççĕ ав. Пирĕн вара «Чăвашкинорана» архив туса хучĕç.

Фильмсем пысăк экран çине тухчăр тесен урăх оборудованипе ÿкермелле. Унашкалли Наци телекуравěнче пур. Вěсемпе ěçлес кăмăл пысăк. Сăмахран, пăрахнă ачасем пирки ěçе пěрле ÿкеретпěр. Тен, çав картина малашне кинофестивале те хутшăнě.

Тепěр çěнěлěх – хам çырма пуçлани. 7 сценари хатěрленě.

**– Чăваш наци конгресěн ěçě-хěлě патне таврăнар-ха. Вице-президентра çулталăк çеç терěмěр, çапах та чăвашлăх ěçěнче – 30 çул ытла...**

– Геннадий Архипов çак тивěçе сěнсен турткалашса та илтěм. Унсăрах хутшăнатăп-çке терěм. Вăл вара Мускав, Раççей шайěпе ěçлекен кирлě терě. Пултарулăх енěшěн явапла çын эпě Конгресра. Паллах, ытти ěçрен те пăрăнмастăп.

**– ЧНК ěçě-хěлě, манăн шухăшăмпа, нумайăшне канăçсăрлантарать. Ытларах чухне унпа кăмăлсăрри палăрать. Эсир мěн каланă пулăттăр?**

– Кашни чăваш хăй патша тесе калани пур. Çакăн пěлтерěшě паян вырăнлă мар. Патша пулма пăрахмалла. Кашнийě хăйěн ěçěпе чăвашлăхшăн тăрăшать-ха, анчах та чун-чěре, тăванлăх тěлěшěпе çыхăнăва, туслăха çухатса пыратпăр. Çавна пула шар куратпăр та. Пире, ав, пěтсе пыракан халăхсен йышне кěртеççě. Сăлтавне ютра мар, хамăрта шырамалла. Ку енěпе эпě мěн тăватăп-ха темелле.

Шупашкарта пурăнакансенчен 67% – чăвашсем, анчах ачисене тăван чěлхепе калаçтармаççě. Манăн ывăл Микулай тăваттăра. Эпě ăна чăвашла вěрентнě. Садике çÿреме пуçларě, вырăсла пуплеме хăнăхрě, каярах ют чěлхе те вěренÿ-ха, пурте кирлě.

**– Чăн чăваш пулса юлас тесен паян мěн тумалла пирěн?**

– Ниме пăхмасăр пěрлешмелле, чăваш сăнарне чěртсе тăратмалла. Камран тěслěх илмелли çук мар. Ялти атте-анне – чăн чăвашсем! Геннадий Волковăн этнопедагогики те çавăнтанах. Унра – мěн чухлě интеллигентлăх, çынлăх, чунлăх. Халě çухатса пыратпăр.

Хама илес тěк – хăй вăхăтěнче ура хунă çынсене тав сăмахě сеç калатăп. Чунпа çирěпленме пулăшрěç.

**– Мěнле шухăшлатăр: съездра мěн пирки ытларах калаçěç-ши?**

– Пěр-пěрне хурласа хамăр ята ярас марччě. Çакă – чи кирли. Халăха упраса хăварас ыйтусемпе ěçлес тěлěшпе аналитика центрě йěркелемелле. Ял хуçалăхě, культура, бизнес, ытти енěпе ěçлекенсен комиссийěсене çирěплетмелле. Вěсем ячěшěн çеç пулмалла мар, чăнласах ěçлемелле.

**– Президентра кама куратăр?**

– Халăха пěрлештерекен çын кирлě. Наци юхăмěн лидерě кирек хăш шайри çынпа та пěр чěлхе тупма пултартăр. Сумлă, халăх пěлекен çынсем пур паян: Николай Егоров, Николай Угаслов, Виталий Иванов, Алексей Лапшин, Александр Капитонов, Владимир Тяпкин... Владимир Ермолаевпа Николай Герасимов та чăвашсемех вěт. Мěншěн вěсене хутшăнтарас мар çак юхăма?

Халě мěнлерех-ха? Ăна юратмастпăр, ку урăхларах. Тěп пахалăх, тем тесен те, чунри чăвашлăх. Эпир пěрле пулсан пирěн сасса Мускав, тěнче шайěнче те илтме пултараççě. Тÿре-шарапа та ěçлě хутшăну кирлě.

**– Тата мěн канăçсăрлантарать сире?**

– Мана, ялтан тухнă çынна, чăваш ялěн пурнăçě шухăшлаттарать. Пысăк мар республикăн усă курман çěр лаптăкě мěн чухлě. Эпир çěртен уйрăлса кайнă, ăна юратма пăрахнă. Ялсенче культура учрежденийěсем, шкулсем оптимизаци серепине лекеççě. Малашлăх, ěç çукки çамрăксене хулана ăсатать.

Чăваш арěсен вăйěпе мěншěн-ха хамăр патăмăрта усă курмалла мар? Çакна тÿре-шаран курмаллах. ЧНК шăпах халăх нуши-терчě пирки влаçрисене аса илтерсе, пěлтерсе тăраканě вырăнěнче. Унăн хастарěсен ыйтăва çивěч лартмалла.

Эпир яланах «Чăваш Ен – пилот регион» тесе мухтанаттăмăр. Кăтартас пулать ку енěпе те хамăрăн хастарлăха. Вара çум курăклă, çынна кěтсе выртакан çěр те пуç тайěччě.

**– Несěлěмěрсем те, паян пурăнакансем те ытти халăх çыннине хисепленě, хисеплеççě те. Хамăра та çаплах тутарас килет. Çапах та тěп хулари «Шупашкар: 500 çул» ятпа çÿрекен культурăпа кану паркěнчи Юпана темшěн курайманççě. Кăларса пăрахаççě, çунтарма хăтланаççě. Мěн япали çакă, мěн палли? Халăха хисеплеменни-и? Тен, чăваш Туррине хирěç тăни?**

– Эпě те тěне кěнě, турра ěненекен сын. Анчах та çут çанталăка çывăххи, унпа килěшÿллě пурăнни çынна ура çинче çирěп тăма пулăшать çеç. Эпир халь тымарсенчен татăлса кайнă, историе пěлместпěр, несěлсене чысран кăларнă. Аваллăха мěншěн çунтармалла, йăлайěркене мěншěн пěтермелле? Ку енěпе те нумай ěçлемелле. Эпир лайăх пулсан аякри чăвашсене те кăмăллă, вěсем те сывă.

**– Оринован опычě пысăк. Усă курмалла та курмалла...**

– Эпě кăна пулмалла тени çула пÿлсе пырать. Çамрăк композиторсем, режиссерсем çук. Çав вăхăтрах Иосиф Дмитриев Казахстанра ěçлесе пурăнчě. Кунта кирлě мар. Яваплăхě пěтěмпех тÿре-шарана тивмелле. Ун пирки камăн уççăн каламалла? Чăваш наци конгресěн. Ун ларăвěсенче сÿтсе явса влаçрисем патне çитермелле. Шухăшлаччăр.

**– Конгреса мěнле майпа пулăшма пулать?**

– Хальлěхе ЧНК «моторě» чăхăмлать-ха. Чи малтанах «эпě» тесе кăкăра çапса çÿреме чарăнмалли пирки маларах асăнтăм ěнтě. Патшалăх шайěпе те пулăшу кирлě: тăватă çынлă штат валли укçа-тенкě тупма çуках-ши вара? Чăвашлăх чунне чěртсе тăратсан пиртен пуянни те пулмě.

Надежда СМИРНОВА калаçнă.
*«Хыпар», 17.10.2013, 200№.*

## ПРЕЗИДИУМ ЛАРĂВĚ

*Юпа (октябрь) уйăхěн 17-мěшěсенче Чăваш наци конгресěн Президиумěн ларăвě иртрě. Унта съезда хатěрлес енěпе тěрлě ыйту пăхса тухрěç.*

Президиум членěсем Шупашкар хулинче хăшě-пěри Чăваш наци конгресěн Президиумěн ячěпе ултавлă тěл пулусем ирттернине сивлерěç.

Аса илтеретпěр: Чăваш наци конгресěн VIII съездне унăн Президиумě хатěрлет. Делегатсемпе те, хăнасемпе те, съездăн тěрлě докуменчěсен проекчěсемпе те пěтěмпех Президиум ěçлет.

Хаклă ентешсем! ЧНК Президиумě сире çапла чěнсе калать: енчен те сирěн съезда хатěрлес тата ирттерес тěлěшпе ыйтусем пулсан вěсене пěтěмпех Президиума çитерсе пама тăрăшăр.

ЧНК пресс-служби.
*17.10.2013.*

## СОБРАНИЕ АКТИВИСТОВ В ЧЕБОКСАРАХ НАКАНУНЕ 8-ГО СЪЕЗДА ЧУВАШСКОГО НАЦИОНАЛЬНОГО КОНГРЕССА

*18 октября 2013 года в Чебоксарах, в Литературном музее, состоялось собрание руководителей землячеств Чувашской Республики и активистов чувашского национального движения. Оно было посвящено предстоящему 8-му съезду ЧНК. В мероприятии участвовало более 50 человек.*

Собрание открыл и вел авторитетный экс-председатель Совета старейшин при ЧНК, руководитель землячества Канашского района, известный писатель, публицист, педагог, ученый **Анатолий Кибеч.**

Мероприятие открылось исполнением маршевой песни-гимна «Малалла утар!» (Шагать вперед!) Николая Шубоссинни и Федора Павлова. В рабочий президиум собрания был приглашен начальник отдела этноконфессиональных отношений Министерства культуры, по делам национальностей и архивного дела ЧР Сергей Казаков. Мероприятие освещали журналисты республиканских газет, чувашских Интернет-сайтов и Интернет-телеканала «Сувар-ТВ».

Принимается повестка дня: 1. О работе Президиума ЧНК. 2. О проектах решений 8-го съезда ЧНК. 3. О выборах нового руководства ЧНК. 4. О регламенте 8-го съезда ЧНК.

На собрание были приглашены руководители ЧНК. Но пришел только председатель исполкома Конгресса Константин Портнов. Он сообщил, что члены Президиума ЧНК не приняли приглашение оргкомитета собрания. Портнов информировал собравшихся о том, что его и других активистов тоже не удовлетворяет нынешнее состояние дел в общественной организации. Но, мол, не все от них зависит. К. Портнов кратко информировал о подготовке к съезду. Протоколы об избрании делегатов в основном предоставлены. Но пока не из всех районов ЧР. Присылают отчеты и из диаспоры. Около половины делегатов из Чувашской Республики. В понедельник состоится пресс-конференция. Съезд откроют старейшины и руководитель ЧНК Г. Архипов.

Один из создателей ЧНК, экс-вице-президент **Виталий Станьял**: Делегатов назначают под диктовку руководства. Но несогласных с этим вычеркивают из списков. В ряде регионов – разногласия среди активистов. В Татарии Константин Яковлев организовал, как положено. В Совете ЧНК нет людей, которые могут написать обновленные Программу и Устав. Устав требует изменений. Мы создавали ЧНК как высший представительный орган чувашского народа. А что стало теперь?

Отчет о проделанной работе Г. Архипов уже сделал в прошлом году, на юбилейном собрании к 20-летию ЧНК. Сейчас требуется проблемный доклад. Доклад в основном подготовлен, но даст ли возможность ознакомить его делегатов съезда нынешний Президиум ЧНК? У него нет подготовленной Программы. Проблемы – обеспечение рабочими местами в Чувашии. Люди вынуждены уезжать в поисках работы в Москву и другие регионы. Национальное образование. Подготовка национальных кадров. Положение в диаспоре.

В. Станьял критикует первого вице-президента ЧНК Владимира Иванова и его недавнюю предсъездовскую статью в газете «Хыпар»... Спасибо Министерству культуры ЧР за содействие в подготовке к съезду.

(Выступление воспринято с большим вниманием и единодушно одобрено горячими аплодисментами).

**Василий Пушкин,** преподаватель-филолог из Чебоксар, активист землячества Батыревского района ЧР: Руководители ЧНК вычеркивают из списков неугодных делегатов. Прежде заведующие РОНО инструктировали учителей голосовать за нынешнего руководителя ЧНК. А что в образовании? Сократили школы в деревнях, стали возить детей в крупные поселения и школы школьными автобусами. Но бывает – то бензина нет, то шофер пьян. На съезде не нужны самоотчеты, как прежде. Они отнимают время. А нужно обсуждать проблемы. Слово «государство» изъяли из Конституции Чувашской Республики вместе с названием должности руководителя «Президент».

**А. Кибеч:** документы первого съезда ЧНК готовил юрист Николай Лукианов. Ему слово.

**Николай Лукианов,** кандидат в президенты ЧНК: Я подготовил Открытое письмо Главе Чувашской Республики Михаилу Игнатьеву. Оно опубликовано в интернете и республиканских газетах на двух языках. Письмо также представлено в республиканскую газету «Хыпар». Я призвал всех, в том числе власти Чувашии, работать вместе на благо народа и республики. Но имеется непонимание. Мы приглашали на собрание членов Президиума ЧНК. Но они не пришли. Меня наше Канашское землячество избрало делегатом и выдвинуло кандидатом в президенты ЧНК.

Чувашская нация обладает большим интеллектуальным потенциалом. Наши сородичи работают во всех регионах Российской Федерации. Наш потенциал нужно использовать на благо народа, Чувашии и России. Нужен обновленный Устав. Его проект предварительно надо разослать для обсуждения, обобщить предложения и принять. Нужна Программа ЧНК – вектор развития нашей нации численностью полтора-два миллиона человек. Нужно обсудить все аспекты. Этот важнейший документ надо наметить на съезде, разработать и через год принять, утвердить. Содоклад разработан. В «Хыпаре» его почему-то еще не опубликовали. Речь идет о перспективах нации. Будем ли мы в будущем или нет? Меня волнует судьба и будущее нашей нации. Мы можем раздать материал делегатам, чтобы донести до них основные тезисы.

**В. Станьял:** Это необходимо. Если ты взялся, то давай. Тем более, если ты кандидат.

**Н. Лукианов:** Я готов выступить с проблемным докладом «О месте ЧНК в современном мире». За 20 лет положение в мире, стране, республике изменилось кардинально.

**А. Кибеч:** Содоклад надо довести до делегатов.

**Реплики из зала:** Одобрить.

**Надежда Иванова,** доцент Республиканского института образования: Чувашские педагоги подготовили отклик в поддержку Открытого письма Н. Лукианова. Вот он с подписями. Его обещали опубликовать в СМИ. Ведь не все прочитали.

**Олег Цыпленков (Ульдияр),** почетный председатель Союза чувашской молодежи «Сувар»: На одном из прошлых съездов мы выдвигали альтернативную кандидатуру в президенты ЧНК известного предпринимателя Александра Капитонова. Но меня в Президиуме ЧНК вычеркнули из списка делегатов. И я не смог выступить с предложением... Нынешний ЧНК фактически превратился в общество с ограниченной ответственностью (ООО) «ЧНК». Мы создали Интернет-телеканал «Сувар-ТВ». Берем интервью у активистов и руководителей национального движения и ЧНК. Обратились и к исполняющему обязанности президента ЧНК Валерию Клементьеву. Хотели, чтобы он гласно, публично рассказал общественности о себе, своих взглядах, продемонстрировал свой кругозор. (Ведь В. Клементьев еще мало известен широкой чувашской общественности. – Авт.) Но он отказался давать интервью. В. Клементьев не готов к руководству общенациональной организацией. Ученые заносят в Красную книгу исчезающие растения, насекомые, животные. Но почему не занести в Красную книгу чувашскую нацию?

**А. Кибеч** вновь цитирует статью вице-президента ЧНК В. Иванова в газете «Хыпар». Там ничего не говорится об экономическом положении нации... В. Иванов – также «мастер» выборной процедуры президента ЧНК на съездах. С шутками-прибаутками он ловко управляет процедурой голосования в «нужном» для руководителя русле...

**Тимер Тяпкин**, руководитель чебоксарского Фонда поддержки чувашской культуры «Сувар», экс-вице-президент ЧНК: Действительно, нынешний ЧНК превратился в ООО «ЧНК». То есть фактически в частную организацию. Но это ООО выступает от имени чувашского народа. Когда я пытался что-то предлагать членам Президиума ЧНК, мне говорили: «А какое отношение ты имеешь к ЧНК?» Михаил Краснов отвергает наши предложения. (После публичной критики в СМИ методов руководства ЧНК со стороны членов Совета ЧНК и группы активистов общественной организации в 2004 году оппонентов-«смутьянов» вынудили покинуть ЧНК. – Авт.) Список делегатов съезда ЧНК – тайна. В оргкомитет съезда наш актив не включают. Мы находим понимание в Минкультуры ЧР, властных структурах, но не в нынешнем президиуме ЧНК...

**Николай Егоров,** ученый-тюрколог: Выразить недоверие нынешнему Президиуму ЧНК...

Собрание решило направить своих представителей в оргкомитет 8-го съезда ЧНК. Представителями названы В. Станьял, Н. Лукианов, В. Пушкин, О. Цыпленков, Т. Тяпкин. В секретариат съезда – Анатолия Кириллова. А. Кибечу поручено открывать съезд как старейшине. Протокол собрания поручено довести до оргкомитета съезда.

Тимер АКТАШ, Чебоксары. 18.10.2013 г.
*http://mosentesh2.ucoz.ru/news/zemljachestva_aktivisty_i_chnk/2013-10-20-2633.*

## АРКАТАС МАРЧЧĔ

*Чăваш наци конгресĕн 8-мĕш съезчĕ умĕн «Хыпарпа» ытти кăларăмра, инçекурăмра интервьюсем тухнă хыççăн ман пата ырласа, лайăх сĕнÿсем парса каланă сăмахсем нумай килчĕç.*

*Çав вăхăтрах ЧНК Президиумĕн членĕсенчен хăшĕ-пĕри вĕчĕрхенсе каланă элек сăмахсем те пулчĕç («сăмсуна мĕн чикетĕн, президент пулас килет-и?» е «съезд умĕн мĕншĕн сиксе тухрăн?» тата ыт. те).*

Çапла калакансем Чăваш наци конгресне тăвас тесе кĕрешнĕ чухне пĕри те халăх юхăмĕ мĕнне пĕлмен, анчах кайран Конгресс историйĕнче хăйсене мала кăларса каппайма пуçларĕç, «Чувашский национальный Конгресс» (2003, 2013) кĕнекере «отцы-основатели» тесе саркаланса ларма именмерĕç. Вĕсемех хастар çынсене Президиум йышĕнчен кăларчĕç.

Шупашкарта 1988 çулта И.Я. Яковлев обществине уçма КПСС обкомĕ чарсан тата ЧОКЦ икке пайланса кайсан Чăваш халăх хуралне е Чăваш наци конгресне тăвасси çинчен калаçу пуçартăм. Республикăри Политçутлăх çуртĕнче (хальхи филармонире) мана Чăваш халăх хуралĕн тата «Тĕпел» (Трибуна) пĕрлĕхĕн ертÿçине суйларĕç, çавăнпа Конгресс тăвас шухăша çывăхра кăна мар, тулай чăвашсен хушшинче те сÿтсе яврăмăр. Паянхи пек ас тăватăп: республика тулашĕнче малтанхи хут Конгресс шухăшне Самар облаçĕнчи Йĕкер ялĕнчи колхоз правленийĕнче ятарлă ларура сÿтсе явса тĕрĕслерĕмĕр. Колхоз механизаторĕсем ку пулăма çирĕппĕн килĕштерсе ырланине ăшра халĕ те ыррăн усратăп.

Конгресс патне çитме çăмăл пулман. Никамран пĕр пус илмесĕр, таптакансенчен пăрăна-пăрăна, «Тĕпелпе» «çавра сĕтелсем», ял мухтарĕсем, Çамрăксен координаци центрĕ, «Çилçунат» литературăпа пултару пĕрлешĕвĕ, поэзи фестивалĕсем, «Çеçпĕл кăвайчĕсем», Чăваш тавра пĕлÿçисен пĕрлĕхĕ тата ытти тем тĕрлĕ ĕç урлă тин çынсене пĕрлешÿ шухăшĕ патне çитерме май килчĕ. Чăваш конгресне пухасси пирки пичетлеме хатĕрленĕ документа алă пусма килĕшекен парти Шупашкарта пĕрре çеç тупăнчĕ – ЧАП ертÿçи Н.Е. Лукианов юрист.

<...>Диаспорăпа ĕçлекен комитет тăвасси пулмарĕ. Республикăн Аслă Канашĕ, А.П. Хусанкай депутат темиçе хут ăнлантарса калаçнă хыççăн, халăх сăмахне итлерĕ, Постановлени кăларчĕ. Аслă Канаш Председательне Э.А. Кубарева ЧНК йĕркелÿ комитечĕн ертÿçи пулма палăртрĕç, Хусанкайпа иксĕмĕре председатель çумĕсем турĕç. Йĕркелÿ комитечĕн кашни членнех уйрăм ĕçсем хушса панăччĕ. Конгресс мĕн иккенне халăха ăнлантарса пама, Чĕнсе калани тата Устав çырма мана хушрĕç. Чĕнсе калани, А.П. Леонтьева панă «Тăванлăх тăварпа пиçĕхнĕ» интервью «Хыпар» хаçатра, каярахпа Чăваш наци конгресĕн 1994 çулхи кĕнекинче пичетленчĕç.

Конгресăн 1-мĕш съезчĕ ăнăçлă иртнĕ хыççăн Халăх хуралĕпе «Тĕпел» тата ЧОКЦ [Юхма Мишши ертсе пынă ЧОКЦри пăтăрмахсем хыççăн çав ятпах йĕркеленнĕ пĕрлĕх. – А.Л.] ячĕпе хаçатра пĕлтерÿ тухрĕ (Хыпар, 1992, юпа, 16). Наци аталанăвĕн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнине, пĕрлĕхпе чăмăртану шухăшĕ мала тухнине, ирĕклĕх кĕрешĕвĕн умри тĕллевĕсене шута илсе «Тĕпел», Халăх хуралĕ тата ЧОКЦ-2 Чăваш наци конгресĕпе пĕрлешсе пĕр вăй пулса тăнине, малалла Конгреспа килĕштерсе ĕçлессине пĕлтертĕмĕр.

Конгресра эпĕ вице-президент тата Мăн Канаш председателĕ чухне 5-мĕш съезд ирттерме тÿррĕн хутшăнтăм. Çав съездсен сценарийĕсене никамăн та мар, пĕтĕмпех манăн çырса хатĕрлеме тиврĕ. ЧНКна çирĕп йĕркелесе çитерсен ăна пулăшас вырăнне (çынсем каланă тăрăх – культурăн ун чухнехи министрĕ хушнипе) аркатма тытăнчĕç.

Чăваш наци конгресĕ – кирлĕ, вырăнлă тата усăллă пĕрлĕх. Вăл нихăçан та патшалăхпа саккунсене хирĕç ĕçлемен. Ăна кампа та пулин хирĕлме йĕркелемен. Вăл тĕнче тăрăх сапаланса кайнă тăван халăха пĕр кăмăл-туйăмпа, малашлăха туртакан шухăшпа чăмăртама çурални курăнса тăмасть-и вара?

ЧНК умĕнче тăракан ыйтусене ЧР ертÿлĕхĕ те, ытти регионти администрацисем те уйрăмшарăн татса параймаççĕ. Чăваш наци Конгресĕ – чăваш пĕрлĕхĕн штабĕ, чыслăхпа танлăх ялавĕ. Ăна пылчăка пăрахакансене, пĕрлĕхе шалтан та, тултан та аркатакансене алай теме пултараймастăп.

Кама чăрмантарать-ха çемьесем, районсем, регионсем, халăхсем килĕштерсе, нимелле пулăшса, упранса пурăнни? Каламасăрах паллă: халăха мĕскĕнлетсе, ултавлă сăмахсемпе витĕнсе, ун ĕнси çинче харам пырла пурăнакансене чăрмантарать. Çавăн пеккисене Конгресран тасатас пулать.

8-мĕш Аслă пухăва ирттерме пухăнакан делегатсен ытларах пайĕ ман пекех шухăшласса, тăван халăх умĕнче тÿрĕ кăмăллă пуласса шанатăп.

Виталий СТАНЬЯЛ.

*«Хыпар», 22.10.2013, 203№.*

## ТИЛХЕПИНЕ ТЫТМА ПĔЛМЕЛЛЕ

*Чăваш наци конгресĕн пĕрремĕш вице-президенчĕ В.А. Иванов юпан 12-мĕшĕсенче «Хыпар» хаçат корреспондентне панă интервьюна вуланă хыççăн тунсăх шухăшăмсем пушшех вăйланса кайрĕç. Çав хушăрах Конгресс мĕншĕн хавшаса пынин сăлтавне аванах сисрĕм. В. Иванов хăйĕн шухăшне «Тур лашине кÿлме пĕлтĕмĕр...» тесе çирĕплетет.*

Анчах тилхепине камсем тата мĕнлерех тытса пыни пирки шарламасть, виçĕ пăнчă кăна лартса парать. «Пĕр чĕлхеллĕ пуласси, пĕрле юрласси, культурăна упрасси – пĕрремĕш вырăнта тăрать», – тет вице-президент. Ытла та пĕр енлĕ шухăшлав мар-и ку? Патриотсем те «аваллăха упрама тăрăшакансем» çеç. Конгресс çурчĕ вара калаçмалли вырăн пек кăна курăнать. «Унта кĕме чăваш чĕлхи кăна кирлĕ, вăл – чи кирлĕ документ (?), алăксем яланах усă, кашни чăваш чун ыратăвне калаçса çăмăллатма пултарать», – пĕлтерет В. Иванов. Президенчĕ те, вице-президенчĕ те сайра хутра кăна пырса кайнă чухне кампа калаçĕ-ха унта кĕнĕ чăваш?

Конгресс республика пурнăçĕнче мĕнлерех вырăн йышăнни пирки тулай чăвашĕсем пĕлсех каймаççĕ. Унăн хисепне çĕклес тесен урăхларах тĕллевсемпе ĕçлени кирлĕ. Манăн шухăшăмпа – тĕп вырăнта халăха упранса юлма, ăна хальхи виçепе аталанма, республикăна вăйланма пулăшасси пулмалла. Конгресăн правительство лартнă тĕллевсенчен айккинче тăмалла мар. Хутшăнса ĕçлемелле, министрсен, депутатсен йăнăшĕсене асăрхаттарма та хăрамалла мар. Республика Раççейри кашни чăвашăн мăнаçлăхĕ пултăр тесе ĕçлемелле. Конгресс кĕрсе тухмалли вырăн çеç мар, ăслă, мал курăмлă, тăрăшуллă, укçашăн мар, халăхшăн, республикăшăн ĕçлекен çынсен пĕрлешĕвĕ пултăр. Чăвашла калаçакан кашниех Конгресс членĕ пулма пултараймасть. Чи вăйлă политологсене, социологсене, экономистсене, философсене явăçтармасăр усăллă Конгресс тума çук. Халăх шутĕнчен ытларах ăс хăвачĕ кирлĕ!

Пире тепĕр чух пурнăçăн тĕп саккунне тĕрĕс ăнланманни те айккинелле пăрса ярать. Лаши вăл, паллах, – пурлăх никĕсĕ, экономика. Урапи çине вара темĕн те тиенет: шкулсем, культура çурчĕсем, больницăсем, театрсем, стадионсем, хаçат-журнал, кĕнекесем тата ытти те.

Чылай çул каялла эпĕ «чăваш сăпки – ялта» тесе çырнăччĕ. Ачи тухса ан ÿктĕр тесен сăпка тĕпĕ шанчăклă пулмалла. Çав шанчăка пире ĕç кăна парнелет. Ял пурнăçне ĕç кăна чун кĕртет. Çакă пулать те ĕнтĕ авалтан пыракан тĕрĕс йăла. Ĕççĕр ялта юрă илемĕ те çук, тăван чĕлхепе калаçнин те усси сахал.

Хамăр республикăра ĕç вырăнĕсем туни тухса кайнă вăй питти çынсене килне таврăнма пулăшĕ. Хальлĕхе эпир çавăн пек çынсен шутне те пĕлместпĕр вĕт-ха. Вĕсем пĕри те В. Иванов е А. Кибеч çырнине вуламаççĕ, каланине те илтмеççĕ. Эпир тăрăшни çерçисене тупăран пенĕ евĕр кăна пулса тухать. Пĕчĕккисемпе ваттисем нимех те тăваяс çук. Пĕрисем – айван, теприсем – ывăннă.

Халăха упраса хăварас тесен чăваш килне, ялне çирĕплĕх кĕртмелле. Паллах, ял экономики урлă. Çавă пулать те хальхи политикăн чи усăмлă кăтартăвĕ. Глобализаци туртăмĕ хусаланнă вăхăтра чăваш ялне çăлса хăварма пулĕ-ши? Конгрессменсен пусне пуринчен ытла çак ыйту ыраттармалла. Юрласси, ташласси çухалмĕ.

Чĕлхе ыйтăвĕсенче те ăнланманлăх çук мар. Чăвашла калаç, чăвашла вĕрен тенипех ĕç тухмасть. Тăван чĕлхе статусне ÿстерес ĕçе патшалăх шайĕпе туса пымасан учительсемпе çыравçăсен тăрăшăвĕ пысăк витĕм кÿреймĕ.

Учительсене пухса калаçасси – пĕр шайри ĕç, «сывăрса» ларакан чиновниксене, депутатсене вăратасси Конгресăн çÿлерех шайри ĕçĕ пулмалла.

Юрлаччăр, савăнччăр, анчах политикăпа экономика ыйтăвĕсене ан хускатчăр текенсем те çук мар вĕт.

Вăйлă, авторитетлă Конгресс чи малтан хамăр республикăна кирлĕ. Ыйтăва çакăн пек лартнăшăн ытти регионти чăвашсем пĕртте хирĕç пулас çук. Республика ертÿçисем те ăнланаççĕ пулĕ тетĕп. Вăйлă Конгреспа вăйлă республика халăхăн икĕ çуначĕ пулччăр.

Кĕçех Конгресăн VIII съездне ирттермелли кун та çитĕ. Хатĕрленÿ ĕçĕ мĕнле пыни пирки каламăп. Мĕнле йышăнусем пулаççĕ-ши? ЧНК Уставне мĕнле çĕнĕлĕхсем кĕртеççĕ-ши? Ĕçпе экономика ыйтăвĕсене малти вырăна лартас тĕллев пур-ши? Е каллех юрлас, ташлас, концертсем, уявсем ирттерес шайра кăна юлĕ-ши? Тĕрлĕ йышăнăвăн проекчĕсем пичетре пулĕç-ши? Мана темшĕн паян Конгресра кама чĕнмелле е чĕнмелле мар, кама кĕртмелле е кĕртмелле мар, кама сăмах памалла е памалла мар ыйтусемпе ытларах ĕçленĕ пек туйăнать. Çĕкленÿ туртăмне тĕпе хурса ĕçлени кирлĕ. Лашине кÿлме пулĕ-ха, тилхепине тытма пĕлесчĕ. Ăна пултаруллă та тивĕçлĕ çын аллине парасчĕ.

Анатолий КИБЕЧ, ЧАССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.
*«Хыпар», 22.10.2013, 203№.*

## ЙĂХТАШСЕНЕ ЧĂМĂРТАНМА ПУЛĂШРĔ

*Чăваш наци конгресĕн пусаруçисенчен пĕри – Чăваш Республикин Аслă Канашĕн Культура, чĕлхе тата наци хутшăнăвĕсен енĕпе ĕçлекен комиссийĕн председателĕ пулнă Атнер Хусанкай, ЧНКн пĕрремĕш тата хисеплĕ президенчĕ. Вăл паян пирĕн хăна.*

**–Атнер Петрович, Конгресс йĕркеленнĕ тапхăрти ĕç-пуç пирки мĕн каланă пулăттăр?**

– Чăваш наци конгресĕнчен маларах – 1991 çулхи çуркунне – Чăваш аталану партийĕ йĕркеленнĕччĕ. Унăн хăйĕн тĕллевĕсем. Эпир шухăшланă тăрăх урăхла тытăм, политикăсăрри те, кирлĕ. Çапла майпа 1992 çулхи çуркунне ЧНК йĕркелес шухăш çуралчĕ. Вăл пĕтĕм чăваш халăхĕн аслă органĕ пулмаллаччĕ.

**– Тата мĕн хистерĕ çак утăма тума?**

– Чăваш халăхĕ тĕнче шайĕнче нихăш тытăмра та çукки. Йĕркелÿ ĕçĕсене пусăнтăмăр, тĕрлĕ регионта пурăнакан йăхташсемпе çыхăнусем йĕркелерĕмĕр. Тăван халăха чĕнсе каланине хаçатсенче пичетлерĕмĕр.

**– ЧНКн ун чухнехи тĕллевĕсем пирки чарăнса тăрар-ха.**

– Чăваш наци конгресĕ пĕтĕм сийри çынсене пĕрлештерсе тăракан чи çÿлти орган евĕрлĕрех пулмаллаччĕ. Халĕ урăхларах вăл. Пирĕн вăхăтра политика тĕллевĕсене те лартнă. ЧНКпа влаç тытăмĕ хушшинче çивĕч калаçусем пулнă. Хальхи ЧНК пачах ĕçлемест тесе каласшăн мар. Çапах та культура, çут ĕç мероприятийĕсене ирттерме патшалăх тытăмĕнче ĕçлекенсем пур.

**– Конгресс Чăваш Енĕн тĕнче умĕнчи ятне çĕклес тĕлĕшпе тунă утăмсене мĕнле хаклатăр?**

– Тĕнчене тухайман халăхсен организацине (ТТХО) кĕме пултартăмăр. Чи малтанах унта чăваш халăх историйĕ, ЧНК çинчен кирлĕ документсем тăратрăмăр. Пире унта 1993 çул пусламăшĕнче йышăнчĕç. Пилĕк континентри 100 ытла халăха пĕрлештерекен организаци съезчĕсене, ытти мероприятие темиçе те хутшăннă, вĕсенчен иккĕшне – «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕпе А.П. Леонтьевпа пĕрле. «Хыпарта» ТТХО докуменчĕсене те пичетленĕ. Алексей Петрович ТТХОна кĕрекен халăхсен паллă çыннисемпе 10 ытла интервью пичетлесе кăларчĕ.

**– Халĕ ку енĕпе лару-тăру мĕнлерех?**

– Çыхăнусем çукпа пĕрех. ЧНК президенчĕн тивĕçĕсене пурнăçлама чарăнсан çак енĕпе ĕçлеме манах шаннăччĕ. Вунă çула яхăн тухса çÿрерĕм хамăн укçа-тенкĕпе Гаагăна (Голланди), ытти хулапа çĕршыва. Çак çула çĕнĕрен якатмалла. Шел те, ют çĕр-шывсемпе çеç мар, кÿршĕсемпе те çыхăну тытмасть Конгресс. Ас тăватăп: эпĕ депутат пулнă тапхăрта депутатсен регионсен хушшинчи ушкăнĕ пурччĕ. Хăй вăхăтĕнче Атăлпа Урал хушшинчи халăхсен Ассамблейине йĕркеленĕччĕ. Çак хутлăх – хăйсене евĕрлĕ кĕтес. Кунта чăвашĕ, тутарĕ, çармăсĕ, пушкăрчĕ тата ытти те пĕр «варта» ÿссе çитĕннĕ пекех. Пирĕн пĕр пеклĕх нумай, çав шутра татса паман ыйтусем те. Çавăнпа та вĕсене пĕтерме пĕр-пĕрин опычĕ, канашĕпе сĕнĕвĕ чылай пулăшнă пулĕччĕ.

**– Эсир Конгреса пилĕк çул ертсе пытăр. 1997 çулта ЧНК ĕçĕнче иккĕмĕш «пилĕк çуллăх» пусланчĕ. Çак тапхăр пирки мĕн каланă пулăттăр?**

– 1997 çул хыççăн та малтан эпир палăртнă тĕллевсемпех ĕçленĕ. Кайран (лару-тăру улшăннă-и унта, тĕрлĕ сăлтав сиксе тухнă-и, влаç тытăмĕпе урăхла çыхăну пулнă-и…) Конгресс çул юппине урăх еннелле пăрчĕ. Тĕп уйрăмлăх, манăн шухăшăмпа, çакăнта: ЧНК политикăран пăрăнса культура, çут ĕç çулĕ çине тăни. Вăл та кирлĕ, анчах политика пирĕн пурнăçра пурах. Эпир, паллах, алăка хупма пултаратпăр, вăл вара кантăкран кĕрет.

**–Чăваш идейи çинчен Иван Яковлев ячĕллĕ общество тума пусланăранпах калаçатпăр. Пур-и вăл пирĕн? Эсир ăна мĕнле куратăр?**

– Наци идейи çукки пирки Раççей шайĕпех калаçаççĕ. Ăна ушкăнпа ларса, ăсчахсене пухса шухăшласа кăларма çук. Хăй, идея текенни, пур вăл чăвашăн, вăл таçта шалта, пирĕн чунра. Енчен те чăваш халăхĕ хăйĕн икĕ пин çулхи историйĕпе, кун-çулĕпе, шăпипе халĕ те пурăнать пулсан – унăн чĕрĕлĕх идейи пурах. Çапах та ăна кĕнеке, трактат çырса палăртма çук.

Халăхăн наци идеологийĕ вара пулмаллах. Унта пĕтĕмпех кĕрет: ăслăлăх та, ÿнер те, сăмахлăх та, шухăшлав та, авалхи тĕнре упраннă ăнлавсем те. Эпĕ хамăн юлташăм палăртнă шухăшпа – «Чăваш наци конгресĕ идеологи хĕç-пăшалĕ пулмалла» тенипе – килĕшетĕп.

**– ЧНКн пĕрремĕш Аслă пухăвне ирттерме Чăваш Республикин Аслă Канашĕ нумай пулăшнăччĕ. Ыттисенче унашкал пулмарĕ. Мĕнле шухăшлатăр: ЧНК влаçпа пĕрле пулни лайăхрах-и е уйрăм пулни-и?**

– Патшалăх наци идеологийĕпе ĕçлеме пултараймасть, наци аталанăвĕпе çыхăннă шухăшсене калаймасть. Лару-тăру урăхла. Унăн хăйĕн тĕллевĕсем пур. Пирĕн Чăваш Республикин кунта пурăнакан çынсемпе ĕçлемелле, экономикине тивĕçтермелле, ытти ыйтăва татса памалла. Анчах та пĕтĕм чăваш наци ыйтăвĕпе ĕçлеме унăн тивĕçлĕ орган çук. ЧНКн хăйсене евĕрлĕ «Ют çĕр-шыв ĕçĕсен министерстви» – тулашри йăхташсемпе ĕçлекен тытăм – пулмалла. Вĕсене çыхăнтарма вара шăпах наци идеологийĕ кирлĕ. Çакна хутшăну енĕпе çеç йĕркелеме пулать.

Юлашки тапхăрта, ун пирки нумай çырнă тата калаçнă, ЧНК Культура министерствин пĕр пайĕ пек пулса кайрĕ. Вĕсене уйăрмалла. Влаç наци идеологине сарма пултараймасть, çапах та çакă вĕсем хирĕçсе пурăнмаллине пĕлтермест.

**– 8-мĕш Аслă пуху усăличчен шутлă вăхăт юлчĕ. Эсир пĕрремĕш съездра йышăннă, палăртнă тĕллевсем пурнăçа кĕрейнĕ-и?**

– Пирĕн, чăвашсен, çитменлĕх пур. Хăй вăхăтĕнче Аслă пуху ырласа йышăннă резолюцисене тем вăхăт иртсен тиркеме пуçласçĕ, çав ыйтусем тавра тавлашусем хĕрсе каяççĕ. Апла пулмалла мар. Математикăри «аксиома» ăнлава аса илер. Пĕрре йышăннă тăк урăх тавлашма кирлĕ мар. Эпир вара пуçламăшĕ патне пĕрре çеç мар, темиçе те таврăнатпăр. Халĕ самани, лару-тăрăвĕ урăхла пулсан та, чăваш аталанăвĕпе çыхăннă самантсем тĕпре юлмалла.

**– Конгреса хăш енĕпе тимлĕрех пулма сĕнетĕр?**

– Пĕртен пĕр чăвашлăх тавра çеç ĕçлемелле мар. Ытти халăх опычĕпе те паллашмалла. Пирĕн информацин хальхи йышши хатĕрĕсене алла илмелле. ЧНКн пуян, вăйлă сайт пулмалла. Конгресс ĕçĕхĕлĕ сулмаклă пултăр тесен ăс-хакăл çыннисене явăçтармалла, малашлăхпа çыхăннă программăсем хатĕрлемелле, чăваш идеологине тумалла, тĕнчепе, кӳршĕсемпе çывăхланмалла. Ытти витĕм пире лайăхлатать, чăтăмлăха тĕрĕслесе çирĕплетет. Аталану яланах хутшăнупа çыхăннă.

**– Аслă пухусенче хускатнă чылай йышăну пурнăçа кĕреймен пулсан та Чăваш наци конгресĕ йăхташăмăрсене пĕр чăмăра пуçтарчĕ теме пултаратăр–и?**

– Паллах. Конгресс чăвашсене чăмăртанма пулăшрех. Çавăншăн йĕркеленĕ те ăна. Маларах Самар е Тюмень, Питĕр е Сарă ту, Чĕмпĕр е Ĕпху чăвашĕсем кашни хăйĕн «хуранĕнче вĕренӳ», халĕ ЧНКпа тачă çыхăну тытаççĕ. Çак саманта пирĕн ваттисен сăмахĕсем – «Пĕччен суран – типсех пырать, халăх сурать – кӳлĕ пулать» е «Пĕччен хулă шăпăр мар» – туллин уçса параççĕ.

Çулсем иртнĕ май Конгресс йăвашланнине мар, ăслăланса, паркаланса, вăйланса пынине курас килет.

*Надежда СМИРНОВА калаçнă.*
*«Хыпар», 23.10.2013. 204№.*

## ЧĔЛХЕНЕ УПРАСА ЧĂВАШ ПУЛСАХ ПУРĂНАР

*Чăваш наци конгресĕн халĕчченхи (21çулхи) ĕç-хĕлне мĕнле хаклатăр? Тĕллевсене пурнăçларăмăр-и? Малашне мĕнле ĕçлемелле? Çаксене тата ытти ыйтăва хуравлать чăвашлăх анлăшĕнче нумай çул тăрăшакан хастарсен пĕр ушкăнĕ.*

**Владимир ИВАНОВ, Чăваш наци конгресĕн пĕрремĕш вице-президенчĕ:**

– Тĕп хуламăрти Чăваш халăх çуртне – Чăваш наци конгресĕн штабне – кунсерен вун-вун çын кĕрсе шухăш-кăмăлне пĕлтерет, чунне уçать, савăнăçĕпе хуйхине пайлать, чăвашлăха аталантарма хăйĕн пулăшăвне сĕнет... Çаксем мар-и-ха Конгресс ертӳçисен ĕçне хаклани, сума суни? Пирĕн, чăвашсен, пĕр-пĕрне ăшă сăмах каласа хавхалантармалла. ЧНКна хурлани, тиркени – хамăра хурланиех. Чăвашлăхшăн тăрăшма кама чарнă? «Санăн пулăшăву кирлĕ мар», – тесе кама çавăтса кăларса янă? Пĕтĕм тĕнчери чăвашсене пĕрлештерсе тăракан, çивĕч ыйтусене май пур тарăн татса паракан ушкăн пурришĕн пирĕн савăнмалла, мăнаçланмалла. Унта никам та укçашăн, орден-медаль илессишĕн ĕçлемест. Вĕсен пурин те пĕр тĕллев – тăван чĕлхене, культурăна, йăла-йĕркене, халăх йышне упраса хăварасси. Çак сăмахсене аслăлатса çапларах та калам: кирек кам та – учитель-и е тухтăр-и, библиотекарь-и е ăсчах-и, журналист-и е писатель-и – хăйĕн ĕçĕнче ăнтăлса вăй хуни – ЧНК ĕçне туниех, ЧНК тĕллевĕсене пурнăçланиех.

Упранса юлнă пĕртен пĕр хаклă палăк пирĕн – чĕлхе, пуян чĕлхе. Ахальтен-и унпа пĕтĕм тĕнче кăсăкланать, ăна тĕпчет, тишкерет. Чĕлхе ыйтăвĕ съездра та тĕп вырăн йышăнасса шанас килет.

**Алексей ЛЕОНТЬЕВ, «Хыпар» Издательство çуртĕн директорĕ-тĕп редакторĕ, ЧНК вице-президенчĕ:**

**–Чăваш халăхĕн сумлă çак пĕрлĕхĕн кун-çул çыравçи – чăннипех те «Хыпар» хаçат. Малтанхи Аслă пухăва хатĕрленсе иртернĕ ĕç-хĕл пирки тухнă материалсем хăйсемех хулăн кĕнекене вырнаçаççĕ. Иртнĕ çичĕ пухăва, Мăн Канаш ларăвĕсене, нумай-нумай ытти мероприятие халалланă статья-корреспонденци, фоторепортаж, интервью, ыйтăм, тишкерӳ миçе кĕнекелĕх-ши? Такам тахçан хаçат пĕр кунлăх çеç тесе каланă. Ку – пачах та тĕрĕс мар. Кĕнеке палатинче, Наци вулавăшĕнче, архивсенче, Раççейĕн тĕп библиотекинче, ытти çĕрте «Хыпарăн» мĕн пур номерĕ упранать. Пĕртте иккĕленместĕп: ӳлĕм пирĕн хаçатри материалсене тишкерсе вун-вун çын кандидат-доктор диссертацийĕ хӳтĕлĕ.**

Ку – манăн вице-президентлăх ĕçĕн курăмлă, кĕрет ӳкерчĕкĕпĕтĕмлетĕвĕ. Кунсăр пуçне ЧНКри манăн «каçалăк» – массăллă информаци хатĕрĕсем, çав шутра – тăван республикăмăр тулашĕнчисем те. Ĕçтешĕмсем пĕлесçĕ: «Канаш» (Чĕмпĕр), «Сувар» (Тутарстан) хаçатсен пĕрремĕш номерĕсене хăй вăхăтĕнче «Хыпар» редакцийĕнче пичетлесе кăлăрланă, каярахпа эпирех вĕсене те, «Урал сассине» те (Пушкăртстан) электрон шрифтсемпе тивĕçтертĕмĕр.

Шел, паллах, Тутарстанра чăвашла радиокăларăм, Пушкăртстанра радио- тата телекăларăмсем хупăнчĕç. Ку – питех те япăх пулăм. Самар, Чĕмпĕр облаçĕсенче, Тутарстанпа Пушкăртстанра шкулсем валли чăвашла вĕренӳ хатĕрĕсем туянма пăрахнă, унти вулавăшсене чăвашла илемлĕ литературăпа тивĕçтермеççĕ. Акă мĕнле ыйтусене татса пама пулăшмалла çав регионсенчи чăваш наци культура автономийĕсен, ытти пĕрлĕх ертӳçисен.

ЧНКн халĕчченхи ĕç-хĕлне япăх теме юрамасть, ку хамăра нимĕн вырăнне хуманниех. Критика вара – кирлĕ. Анчах – нумай-нумай ыйтăва общество пĕрлĕхĕ çеç татса параймасть. Халĕ вара, хăшĕпĕрин шухăшĕпе, халăх йышĕ чакнăшăн, чăваш çемйи ача сахал çуратнăшăн, чăн чăваш ялĕсенче те ачасем вырăсла калаçма пуçланăшăн пĕртен пĕр ЧНК çеç айăплă имĕш. Ыйту: патша саманинче те, совет тапхăрĕнче те халăхăмăр йышĕ ӳссе пынишĕн кама мухтамалла? Паянхи цивилизацин – глобализацин – сиенлĕ туртăмĕсене, шел те, общество пĕрлĕхĕн вăйĕпе çеç çĕнтерме йывăр. Анчах синкерлĕ туртăмсемпе кĕрешмеллех. Унсăрăн пирĕн мĕншĕн пурăнмалла? Чăваш пĕтсен – тĕнче пĕтет...

**Вячеслав ОРИНОВ, Мускаври чăваш наци культура автономийĕн илемлĕх ертӳçи, ЧНК вице-президенчĕ:**

– Самана улшăнса пырать, кашни çын умне çĕнĕ тĕллевсем лартать, пурнăç çулне палăртать. Чăваш наци юхăмĕнче те çĕнĕ тапхăр пуçланасси куç кĕрет. Çирĕм çул хушшинче нацие упраса хăварас сăвапплă ĕçре Конгресс хастарĕсем вăхăт кăларса тăратнă нумай ыйтăва татса панă. Пурнăçа кĕмен ыйту та чылай... ЮНЕСКО пире, чăвашсене, пĕтсе пыракан халăх йышне кĕртнĕ шухăшпа килĕшсе лармасăр малалла ăнтăласси кашнин тĕп тĕллевĕ пулмалла. Çавăнпа та паянхи кун пĕр-пĕринпе тиркешсе-чăкăлташса лармалла мар, «эпĕ мĕнлерех ăслă та пултаруллă» маскăна хывса, каппайчăклăха пусарса мăн асаттесемпе асаннесем пиллесе хăварнă чăвашлăх никĕсĕ çинче чăмăртанмалла. Тăванлăхăн таталнă çыхăнăвĕсене çĕнĕрен чĕртсе ярса, хамăрăн вăя пуçтарса «цунами» илсе килнĕ арканăва хирĕç тăмалла. «Пĕтерӳ» политикине чарса лартса çут çанталăк саккунĕсемпе килĕшӳллĕн чăваш çыннин «пурнăç» чĕрĕлĕхĕсене кăларса тăратмалла. Ку ĕçе тума пурин те пĕрлешмелле: юристсем, экономистсем, бизнесменсем, тĕрлĕ шайри тӳре-шара, ял хуçалăх ĕçченĕсем, ăсчахсем, учительсем, вĕренекенсем, спортсменсем, пултарулăх çыннисем... Пĕр сăмахпа – пĕр сий те айккинче тăрса юлмалла мар. Влаç тытăмĕпе ĕçлĕ хутшăнусем йĕркелесе ямалла. Чăваш наци конгресĕн ĕçĕ пысăк шайра аталанса пытăр тесен VIII Аслă пухура халăх пĕлекен, чăвашлăхшăн тăрăшса вăй пухнă ятлă-сумлă çынна Конгресс президентне суйламалла. Тĕллевĕмĕрсене палăртрăмăр пулсан – лăш курмасăр ĕçлер, Чăваша çӳле çĕклер! Çаплах пултăр!

**15 çул. Чăваш наци конгресне çакăн чухлĕ ертсе лырать Геннадий Николаевич Архипов. Мĕн-мĕн тунипе кăмăллă-и вăл? Паянхи кун ăна мĕн хумхантарать, арман чулĕ пек пусарса тăрать? Сиплев вăхăчĕ вĕçленмен пулин те Геннадий Николаевич пирĕн ыйтусене хуравлама килĕшрĕ.**

– Хамăн тата ЧНК ĕçĕ-хĕлĕ пирки çапларах калană пулăттăм: çĕкленӳллĕ тапхăрсем те, хавшакланнă вăхăтсем те пулчĕç – пурнăçри пекех. Ку чăнлăхпа кам килĕшмест – йĕри-таврари пулăмсене аса илтĕр, республикăпа çĕр-шыв историне тишкерме те манса ан кайтăр. «Хура» чĕлхеллисем тем те пĕр пакăлтатсан та эпĕ нихăçан та правительство «айĕнче» пулман. ЧНК шухăшне вылянмасăр уççăн пĕлтернĕ. Хирĕçӳллĕ самантсенче те ыйтусене пире майлă татса партарма мехел çитернĕ. Çирĕп принциплă çул-йĕртен пăрăнманранах-тăр пысăк шайри чиновниксем те мана: «Пирĕн пек шухăшласа ĕçлĕр», – темен. Мĕншĕн тесен эпир çынсемпе çыхăннă ыйтусенех çĕкленĕ, чăвашлăх ĕçĕнчи тӳнтерлĕхсене пĕтерме, витĕм кӳме çивĕч ыйтнă. Сăмахăма çирĕплетме пĕр тĕслĕх çеç илсе кăтартам. Темиçе çул каялла республикăри хăш-пĕр шкулта чăваш чĕлхи урокĕсене эрнере пĕр сехет çеç хăварма тытăннă. Кун пирки правительствăна тӳрех пĕлтертĕмĕр. Тĕл пулса çивĕч калаçнă хыççăн виçĕ сехет патне каялла таврăнтарма май килтертĕмĕр. Виççĕ те сахаллине ăнланса эпир пилĕк сехет ыйтнăччĕ. Шел те, пирĕн сĕнӳпе килĕшмерĕç.

**– ЧНК пурнăçланă ĕçсенчен тата хăшĕсем сирĕн асăрта янкăр çуталса тăраççĕ?**

– Вĕсем нумай пулнă ĕнтĕ. Шутласа та, аса илсе те пĕтереймĕн. Çапах та пĕр-иккĕшне палăртам. Эпĕ президентра ĕçлеме тытăннă чухне Чăваш наци культура автономийĕсем 28-ччĕ, халĕ – 90. Вĕсене йĕркелеме мĕнлешшĕ кăткăссине ку ĕçе хутшăнманнисем çеç пĕлмеççĕ. Кашнинех вырăна тухса, чăвашсене тупса, пуçтарса пĕр чăмăра пĕрлештернĕ. Çынсем хапăл туса йышăннă фестивальсен шайĕ те çулсерен ӳссе-капашланса пырать. Кăçал пĕрремĕш хут Чăваш акатуйне Раççейри тĕрлĕ регионта пурăнакан чăвашсемпе пĕрле ирттертĕмĕр. Ытти çĕр-шывра тĕпленнĕ тăванăмăрсем те нумайăн килсе савăнчĕç, туслă çыхăнăва çирĕплетрĕç. Каласа хăвармаллах: Акатуй кирлĕлĕхĕ пирки «Хыпар» хаçат тăтăш çырчĕ, ăна пурнăçа кĕртме пысăк пулăшу кӳчĕ. ЧНК ертӳçисем пирки тĕрлĕ хавха сарсан та – эпир Конгресс шайне антарса лартман. Пире итлеççĕ, пирĕнпе канашлаççĕ. Чăвашлăхшăн вăхăтне шеллемесĕр тăрăшакан хастарсене вара чĕререн тав тăватăп. Вĕсем нихăçан та укçашăн ĕçлемен, вĕсенчен пĕри те патшалăх бюджетĕнчен шалу илсе тăмасть. Çак шутра – эпĕ те.

**– Ку çĕкленсе сăмахламалли сăлтавах мар-ха, Геннадий Николаевич. Кӳршĕ республикăсенчипе танлаштарсан – пушшех. Ку ыйтăва, патшалăх шучĕпе тытса тăракан штатсем Конгресра пулмаллине, эсир пĕрре те хускатман-и вара?**

– Хускатнă. Тăватă-пилĕк çынна шалу тӳлесе тăма кăçалтан укçа парасла каларĕç-ха. Чăваш халăх çуртне пĕтĕмпех Конгреса парас ыйту та таталчĕ теессĕм килет. Кусем каллех республика влаçĕпе пĕр чĕлхе тупса ĕçленине çирĕплетеççĕ.

**– Пурте пĕлетпĕр: халăх ним çукранах пăшăрханмасть, тĕрлĕ сăмах алламасть. Малтан ЧНК тавра чăмăртанса ĕçленĕ пултарулă çынсем мĕншĕн ушкăнлана-ушкăнлана пайланса кайрĕç?**

– Хăйсем тĕллĕн ĕçлес терĕç-тĕр. ЧНК алăкне эпир питĕрмен. Вăл яланах уçă. Килччĕр, сĕнччĕр. Тĕрлĕ шухăшлăха эпĕ яланах ырланă, тĕрлĕ шухăшлăхран тĕшшине тупса малалла ăнтăлма тăрăшнă.

**– ЧНК регионсенче пурăнакан чăваш усламçисене пĕтĕçтерсе республика экономикине тĕрев парас çул çине тăнăччĕ. Ку ĕçе йĕркелесе пыма вице-президент та суйланăччĕ. Пархатарлă тĕллев шухăш шайĕнчех юлчĕ пулмалла.**

– Ăна пурнăçлама пĕрремĕш утăм тунăччĕ. Анчах тĕрлĕ сăлтава пула вăл путланчĕ. Ку ыйту патне таврăнмаллах. Раççей Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине кĕнĕ май чăваш усламçисем пĕрлешсе ĕçлени пирĕн республикăна питех те кирлĕ.

**– Чăваш Республикин Конституцийĕнчен «патшалăх» сăмаха кăларса пăрахни нумай-нумай çынна тĕлĕнтерчĕ, калаçтарчĕ. Ку ыйтупа ЧНК Президиумĕ хăйĕн витĕмлĕ сăмахне мĕншĕн каламарĕ?**

– Çак йышăнăва хирĕçлесе влаç тытăмне çыру янăччĕ. Шел, ку енĕпе çирĕпрех пулаймарăмăр. Куншăн, Президиум членĕсемсĕр пуçнĕ, эпĕ те айăплă. Манăн шухăшăмпа, кăна ним тумасăр ирттерсе ямалла мар, кунпа çырлахмалла мар. Шăмат кунхи форумра Аслă пуху ячĕпе ятарлă резолюци йышăнмаллах.

**– Чăвашлăх еплерех аталанасси влаç тытăмĕсенче камсем ĕçленинчен çав тери нумай килет. Ку енĕпе, ăста кадрсем, ятлă-сумлă лидерсем хатĕрлесе вĕсене министерствăсемпе ведомствăсене ертсе пыма сĕнессипе, ЧНК вун пилĕк çул пачах та ĕçлемерĕ. Çавăнпахтăр Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнче культура сферин пĕр представителĕ те çук. Тутарстанра та, Пушкăртстанра та вĕсем пур. Ку çеç те мар, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ те депутат мандатне илме «тивĕç» пулаймарĕ, Общество палатинче те ун валли вырăн тупăнмарĕ. Çак тӳнтерлĕхе ăнлантарма сирĕн рецепт пур-и?**

– Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче, чăваш вăраннă, тапраннă вăхăтра, лару-тăру халăхăмăра кирлĕ пек аталанма тытăннăччĕ. Каярахпа самана хăвăрт улшăнчĕ. Эпир, культура анинче тар тăкакансем – ăсчахсем, чĕлхеçĕсем, писательсем, журналистсем, художниксем, поэтсем, композиторсем, театр артисчĕсем, режиссерсем, музей, библиотека ĕçченĕсем, халăх ăстисем – унăн таппине хирĕç тăраймарăмăр, тискер капитализмра çухалса кайрăмăр. Влаç çакăнпа усă курни сирĕн юлашки икĕ тĕслĕхрен те яр уççăн курăнать. Апла тăк – пирĕн улшăнмалла, хамăра кăтартмалла. Чĕлхене упраса чăваш пулсах пурăнмалла!

**Атнер ХУСАНКАЙ, Чăваш наци конгресĕн хисеплĕ президенчĕ:**

– 1992 çулта пуçланнă тапхăр вăл – хăйсене евĕрлĕ тапрану, чĕрĕлӳ, хавхалану. Пĕрремĕш Аслă пуху йышăнăвĕсем халĕ те вăйра. Вĕсене май килнĕ таран пурнăçланă. Анчах та пирĕн халăхăн хитрех мар йăла пур: эпир яланах малтанхи ĕçсем патне таврăнатпăр та тавлашма тытăнатпăр. Вĕсене йышăнса малалла каймалла чухне хаклă вăхăта çухататпăр, вăй-хала пĕтеретпĕр.

Каярахпа урăхларах тапхăр пулчĕ. Ăна эпĕ уйрăм çынсемпе çыхăнтармастăп. Шĕкĕр турра, Геннадий Николаевич Архипов хăйĕн вăйне, сывлăхне Конгресс ĕçĕшĕн пачĕ, пултарнă тарăн тăрăшрĕ.

ЧНКн малтан палăртнинчен чакмалла мар – пĕтĕм чăваш нацийĕн чăмăртану центрĕ пулса юлмалла. ЧНК вăл хăйсене евĕрлĕ идеологи хĕç-пăшалĕ. Ăна республика влаçĕ тăваймасть... Хăй вăхăтĕнче Конгресс тĕнче шайне çитиех çĕкленчĕ – Тĕнчене тухайман халăхсемпе нацисен организацине кĕтĕмĕр, унта хамăрăн витĕмлĕ шухăшсенеାаларăмăр. Тĕнче правин субъекчĕ пек пултăмăр кăштах теме хăюлăх çитеретĕп. Шел те, çаксене йăлт çухатса пĕтертĕмĕр.

Конгресс тĕп ыйтусене çĕклейми пулчĕ. Вăл администраци тытăмĕн пĕр пĕчĕк пайĕ пек пулса кайрĕ...

Манăн атте, Петĕр Хусанкай поэт, каланă шухăш халĕ те вăйра: Чăвашсем, чăмăртанăр!

**Зинаида ВОРОНОВА, ЧНК Президиумĕн членĕ, ЧНК çумĕнчи халăх ăстисен ассоциацийĕн ертӳçи:**

– Конгресăн халĕччenхи ĕç-хĕлне хаклама мана çăмăл. Мĕншĕн тесен çак тапхăрта питĕ нумай ĕç турăмăр. Республика, Раççей, тĕнче шайĕнчи вун-вун конкурса, курава хутшăнтăмăр, хамăр та чылай мероприяти йĕркелерĕмĕр. Вĕсене пурне те чăвашлăхпа, унăн культурипе, йăли-йĕркипе, тумтирĕпе çыхăнтарса ирттеретпĕр. Сăмахран, чăваш тумне халалланă куравсене кăçал Пушкăртстанра, Киев, Чул хула, Эрĕнпур, Чĕмпĕр, Самар, Саранск хулисенче, Эстони Республикинче хапăл туса йышăнчĕç. Хамăрăн республикăри учительсем, студентсем, юрăçсем, фольклор коллективĕсем валли йĕркеленĕ куравсене, ăсталăх сехечĕсене мĕн чухлĕ ирттернине вара шутлама та пăрахнă.

Манăн шухăшăмпа – кашни çын хăйĕн «уйĕнче» тĕплĕ ĕçлесен,

тарăн «сухаласан» чăвашлăх тăрăмĕ нихăçан та хавшамĕччĕ. Шел те, чылайăшĕ алран кайтăр тесе çиелтен шăйăрттарать. Çавсемех тата – ЧНК ĕçне хура сăсăлпа вараласçĕ, тĕрлĕ хавха сараççĕ. Малашне те çаплах айкашса пурăнсан эпир нихăçан та пĕрлешеймĕпĕр, чăвашлăх ĕçне сулмаклă аталантараймăпăр.

«Кашни чăваш – хăй патша» ăнлава пирĕн халăхăн ăс-тăнне кам савăлласа кĕртсе лартнă-ши? Тем тесен те хамăрăн тăхăмăрсем мар. Ахăртнех – «кашни чăваш патша пулса çӳретĕр те – халăхĕн тĕп ĕçне манăçа кăлартăр» тесе сунакан урăх наци çынни-тĕр. Чăвашсем, уйрăмах арçынсем, патша пулма пăрахар-ха! Çаннăрсене тавăрса чăвашлăх каçалăкĕ умне тăрăр.

**Олег ЦЫПЛЕНКОВ, Чăваш çамрăкĕсен «Сăвар» пĕрлешĕвĕн элтеперĕ, Тĕрĕк халăхĕсен конгресĕн вице-президенчĕ:**

– Чăваш наци конгресĕн халĕчченхи ĕçне эпĕ икĕ тапхăра пайласшăн. Пĕрремĕшĕ, 1992–1997 çулсенче Атнер Петрович Хусанкай президент чухне, чĕрĕлӳпе тапрану вăхăчĕ пулчĕ. Конгресс тавра пуçтарăннă хастарсем тăрăшнипе чĕлхесем çинчен калакан саккун, ăна ĕçлеттермелли патшалăх программисене, Чăваш патшалăх суверенитечĕ çинчен декларацие т.ыт. йышăннă.

Иккĕмĕш тапхăра Конгресс тилхепине Геннадий Николаевич Архипов тытса пыракан çулсемпе çыхăнтаратпăр. Чылайăшĕ ăна: «Малтанхи тĕллевсенчен пăрăннă, пĕтĕçӳ хавшанă, вăйсăрланнă тапхăр», – тесе хаклать. Юлашки пилĕк çул, пушшех те, çителĕксĕр ĕç-хĕлпе палăрса юлать. «Хыпар» хаçат, хăш-пĕр хастар çине тăнипе Чăваш акатуйне чĕртсе тăратма май килчĕ пулин те.

ЧНК ячĕ-сумĕ чакса пынине тĕпе хурса Чăваш çамрăкĕсен «Сăвар» пĕрлешĕвĕ ЧНК президентне улăштарма, яваплă çак должноçа Александр Петрович Капитонова суйлама сĕнсе VI Аслă пухăва хутшăнакансем патне Уçă çыру ятăмăр. Делегатсем сĕнĕве ырламарĕç, йышăнмарĕç. Юрĕ, ку – кама суйласси-тăвасси – вĕсен ирĕкĕ. Тĕлĕнтерекен ĕç-пуç кайран, асăннă Пуху хыççăн, пуçланчĕ – ЧНК мероприятийĕсене хатĕрленсе ирттерме пире чĕнмейыхравлама пăрахрĕç. Чăвашлăх аталанăвĕшĕн ĕçлекенсене пайлама тытăнчĕç: ку – пирĕн майлă, пирĕн ушкăнри çын; ку – пире хирĕç е пире майлă мар. Çавăнпах тăван халăхăмăршăн ĕçлекен хастарсем тĕрлĕ ушкăна пайланчĕç.

Фестивальсем, конкурссем, Акатуй, Кĕр сăри, паллах, кирлĕ. Анчах та çаксемпе кăна çырлахмалла мар паянхи Конгресăн. Хальхи вăхăтра чăваш халăхĕ умĕнче кусенчен те капашлăрах ыйтусем çивĕч тăраççĕ. Калăпăр, çĕр-шывăмăрта 500 пин чăваш чакнин сăлтавĕ, тымарĕ ăçта? Чăвашлăха упраса хăварма патшалăх шайĕнче ятарлă Программа кирлĕ пирки Конгресс хăйĕн çирĕп сăмахне мĕншĕн каламасть? Чăваш Республикин Конституцийĕнчен «патшалăх» сăмаха кăларса пăрахнине хирĕç ЧНК шухăш-кăмăлне татăклă палăртманни, пĕлтерменни пушшех те тĕлĕнтерчĕ. Шĕкĕр турра, асăннă çивĕч тема тавра Наци телекуравĕ «Çапла пултăр!» кăларăм хатĕрлерĕ, «Хыпар» хаçат тĕплĕ темиçе материал пичетлерĕ. Кунта ĕçлекенсем чăваш халăхне упраса хăварассишĕн, унăн пуласлăхĕшĕн тăрăшнине тепĕр хут çирĕплетрĕç.

Геннадий МАКСИМОВ ыйтса пĕлнĕ.
*«Хыпар», 24.10.2013, 205№.*

## ĔÇРЕ КĂТАРТМАЛЛА ВĂЯ

**Валерий Клементьев –** *Чăваш наци конргресĕн вице-президенчĕ. Кăçалхи пуш уйăхĕнчен ЧНК президенчĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пырать. Валерий Леонидович – пирĕн паянхи хăна.*

**– Хăвăрпа тĕплĕнрех паллаштарсамăр.**

– Эпĕ Етĕрне районĕнчи Пупăлькасси ялĕнче нумай ачаллă çемьере çуралнă. Кĕçĕнни, улттăмĕш ача. Аннем Анфиса Дмитриевна эпĕ виçĕ çулта чухне çĕре кĕчĕ. Аслă аппам Людмила анне вырăнне юлчĕ: килти хĕрарăм ĕçĕсем ун çине тиенчĕç.

Аслисем вĕренсе пĕтерсен ăçта килчĕ унта саланса пĕтрĕç, килте аттепе çеç юлтăмăр. Эпĕ саккăрмĕш класра вĕреннĕ чухне вăл та çĕре кĕчĕ. Ирех тăнă, выльăхсене апат панă, хам валли пакетри яшкана пĕçернĕ те Хучаш шкулне пилĕк çухрăм утнă. 28 тенкĕлĕх пособипе пурăнма тивнĕ.

**– Çакăн пек йывăр лару-тăрура сире пулăшакан пулнах ĕнтĕ?**

– Шкулти вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен, класс ертӳçи Ираида Никитина маншăн иккĕмĕш анне вырăнĕнчеччĕ. Вăл предмета вĕрентекен çеç мар, пурăнма вĕрентекен те пулнă.

Шкул пĕтерсе малалла вĕренме каяс, чăн-чăн çын пулас тесе ăнтăлнă. Ĕмĕтсене пурнăçа кĕртме çăмăл маррине те чухланă.

**– Эсир музыка училищи, консерватори пĕтернине пĕлетĕп...**

– Вĕсем кăшт каярах, унччен СПТУра водителе вĕренсе тухнă, çарта пулнă. Унтан таврансан Ман Явăшри культура çуртĕнче директорта ĕçленĕ. Унтан тин Шупашкарти Ф. Павлов ячĕллĕ музыка училищин вокал уйрăмне вĕренме кĕнĕ. Училище хыççăн Мускаври Гнесинасен институтне кайма сĕнчĕç, пысăк хулара пĕр стипендипе кăна пурăнма йывăррине туйса Сарă ту консерваторине суйласа илтĕм. Хыççăн унти аспирантурăра пултарулăха аталантартăм.

Унта 20 çул ытла пурăннă. Чăвашсене пĕрлештернĕ, тăватă çул «Сарă ту» наци культура автономийĕн председателĕнче ĕçленĕ.

**–Темиçе çул каялла тăван республикăна килсе тĕплентĕр. Сарă тури ĕçсене те çийĕнчех пăрахман…**

– Облаçра 13 пине яхан йăхташ пурăнать. Пирĕн автономин штабĕ малтан Балаковăраччĕ, кайран Сарă тăва куçартăмăр. Унта Чăваш çуртне хăпартрăмăр. Кăçалхи çурла уйăхĕнче наци культура автомомийĕн председателĕн тивĕçĕсене Сергей Васильева патăм.

**– Юлашки вăхăтра ЧНК президенчĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пыратăр. Эсир ертсе пынипе мĕн-мĕн тума май килнĕ?**

– Вице-президента иртнĕ кĕркунне суйланăччĕ. Диаспорăра ĕçлесе самай пысăк опыт пухнине шута илсе йăхташсемпе ĕçлеме шаннăччĕ. Геннадий Николаевич Архипов чирлесе кайсан мана хăйĕн вырăнне вăхăтлăха хăварчĕ. Çак тапхăрта тĕрлĕ мероприяти йĕркелеме тиврĕ. Вĕсенчен пĕлтерĕшли – Акатуя çĕнĕ шайра ирттерни. Çурла уйăхĕнчи Мăн Канаш ларăвĕнче 8-мĕш Аслă пуху ирттерме палăртрăмăр.

**– Хăшĕсем Клементьева пĕлместпĕр теççĕ...**

– Эпĕ яланах çапла калатăп: ЧНК çурчĕ çине «Чăваш халăх çурчĕ» тесе çырнă тăк унта пĕтĕм чăваш кĕрсе çӳремелле. Пĕрлĕхре çеç пирĕн вăй. Çиленсе, тулхăрса тăнипе Конгреса малалла яраймăпăр.

**– Нумаях вулмасть К.В. Иванов ячĕллĕ Литература музейĕнче ЧНКн 8-мĕш Аслă пухăвĕ умĕнхи пĕчĕк пуху иртрĕ. Унта ЧНК Президиумĕн членĕсем хутшăнмарĕç. Мĕншĕн?**

– Пуху протоколне Конгреса илсе пычĕç... Акă мĕншĕн пулман эпир асăннă пухура. Пĕлтерӳ айне ЧНКн йĕркелӳ комитечĕ тесе палăртнă. ЧНКн йĕркелӳ комитечĕ вăл – Президиум. Ун пирки пирĕнпе никам та канашламан. Пĕлтерӳ айĕнче Ваттисен Канашĕ те пур. Унăн юлашки пухăвĕнче эпĕ хам та пулнă, анчах унта унашкал йышăну туман. [Çав пуху йĕркелӳçисем тесе] ентешлĕхсен канашĕсене те палăртнăччĕ. Вĕсенчен чылайăшĕнпе çыхăнса илтĕм – нимĕн те пĕлмесçĕ. Ун пек-и, кун пек-и – пирĕн пĕр ĕçех тумалла. Эпир кирек хăш чăвашпа та килĕштерсе ĕçлеме хатĕр. Халăха çеç усă кӳтĕр.

**– Паянхи Аслă пухура ЧНК ертӳлĕхне те суйлĕç. Эпĕ тавçăрнă тăрăх – эсир ун тилхепине хăвăрăн алла илме хирĕç мар. Мĕнлерех тĕллевсем палăртатăр?**

– Манăн программа хатĕр. Тĕллевсенчен чи пĕлтерĕшли – чăвашсене пĕрлештересси, пĕр ĕмĕт-шухăшпа пурăнтарасси.

**– Мĕнле майпа?**

– ЧНКна пырса çӳременнисене унта явăçтармалла, чăвашлăх ыйтăвĕсемпе кăсăклантармалла. Вĕсен тарăн шухăшĕсемпе, ас-хакăлĕпе туллин уса курмалла. Сумлă чăвашсем таçта та пур. Вĕсемпе çыхăну йĕркелемелле, чăваш сумне çĕклемелле.

**– Президента суйланас тăк ЧНКпа влаç хушшинчи хутшăнусене мĕнле йĕркеленĕ пулăттăр?**

– Çак хутшăну пирки халĕ тĕрлĕ калаçаççĕ. Ытларах чухне Конгресăн никама та пăхăнмалла мар, вăл пуринчен те çӳлте тăмалла теççĕ. Эпĕ çапла шухăшлатăп: пирĕн Правительствăра та, ялта та чăвашсемех ĕçлеççĕ пулсан – мĕншĕн вĕсемпе япăх пулмалла? Пуринпе те лайăх пурăнма тăрăшмалла. Йăпăл-йăпăл туса мар, пĕр-пĕринпе калаçса татăлса, пĕр чĕлхе тупса. Ĕç тăвассишĕн утăм хыççăн утăм тумалла.

Надежда СМИРНОВА калаçнă.
*«Хыпар», 26.10.2013, 206–207№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔ ЯЛАН ÇУТĂ ПУЛТĂР

*«Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ, ЧНК вице-президенчĕ* ***Алексей Петрович Леонтьев*** *Конгреса туса хунă йĕркелӳ ушкăнне кĕнĕ (1992 ç., çав кунранпах – ЧНК Мăн Канашĕн, каярахпа Кĕçĕн Канашĕн (Канашĕн, Президиумĕн) членĕ, 1997 çултанпа – вице-президент. Паян унпа Конгресс ĕç-хĕлĕ, çивĕч ыйтăвĕсем тата малашлăхĕ пирки калаçрăмăр.*

**– Алексей Петрович, ЧНК вице-президенчĕ пулнă май мĕнле ыйтусене, мĕнле принципсене тĕпе хурса ĕçлетĕр?**

– Манăн ЧНКри ĕç кил картишĕ, пахчи – массăллă информаци хатĕрĕсем, республикăра тата унăн тулашĕнче чăвашла тухакан хаçат-журнал, радиопа телекурав. Тутарстанра – «Сувар», Пушкăртстанра – «Урал сасси», Чĕмпĕрте «Канаш» хаçатсем тухаççĕ. Кунсăр пуçне Тюменьте, Питĕрте, Красноярск крайĕнче вырăсла-чăвашла пичет кăларăмĕсемм пур. Чĕмпĕрти телекăларăма Олег Мустаев тытса пыма мехел çитерет-ха. Тавах Чĕмпĕрсене. Шел те, Тутарстанра радио чăвашла калаçма чарăнчĕ. Пушкăртстанра радио-телекурав кăларăмĕсем хупăннă. Çакă пире кулянтарать, ку республика тулашĕнчи чăвашла кăларăмсен витĕмĕ чаксса пынине кăтартать. Чăваш Енре те пĕтĕмпех йĕркеллĕ темелле мар, мĕншĕн тесен пичет кăларăмĕсен тиражĕсем чакаççĕ, çав шутра вырăслисен те. Çав вăхăтрах наци каларăмĕсенчен пĕри те хупăнман. Ытти регионпа танлаштарсан пирĕн ку енĕпе ăнăçлăрах та.

Совет саманинче «Çамрăксен хаçачĕ», «Чăваш хĕрарăмĕ», «Сывлăх», «Кил-çурт, хушма хуçалăх» хаçатсем пулман. «Хресчен сасси» çĕн йĕркелӳ саманинче тухма пуçларĕ – СССР пĕтиччен кăшт маларах. «Тетте» журнал пулман, халĕ тухать. Район хаçачĕсенчен пĕри те хупăнман. Чаваш наци конгресĕн пĕрремĕш Аслă пухăвĕнче, 1992 çулта (Атнер Хусанкайпа, ытти йĕркелӳçĕсемпе пĕрле резолюцисем çырма эпĕ те хутшăннă) наци радионе, телекуравне туса хума тĕллев лартнăччĕ. Вăл, кая юлса пулин те, пурнăçланчĕ. Ку, манăн шухăшăмпа, Чăваш Ен влаçĕпе ЧНК пĕрле тунă питĕ пысăк ĕç.

Пирĕн тата ЧНКпа пĕрле кăларакан «Чăваш тĕнчи» хаçат пур. Наци информаци хатĕрĕсене сыхласа хăварма хамран мĕн килнине пĕтĕмпех тунă тесе калама юратех-тĕр.

**– ЧНК диаспорăпа йĕркеленĕ çыхăнусем мĕнлерех шайра?**

– Геннадий Архипова президента, мана вице-президента суйланă вăхăтра, вун пилĕк çул каялла, чăваш наци культура автономийĕсем диаспорăра 20 ытларахчĕ, паян – 80-ран ытларах. Вĕсем пурте ЧНКпа тачă çыхăну тытаççĕ.

**– ЧНК ĕç-хĕлне пропагандăлас, диаспорăпа ĕçлес енĕпе «Хыпар» пĕлтерĕшне мĕнле хаклатăр?**

– Каларăм ĕнтĕ: «Чăваш тĕнчи» хаçат кăларса тăратпăр. «Хыпарта» çак ятпах ятарлă страница уйăхра пĕрре тухать. Йăхташăмăрсем пирки çак кăларăмсенче çеç мар, «Хыпарăн» кашни номерĕнче тенĕ пекех çыратпăр. Республика тулашĕнчен килекен мĕн пур çырăва кун çути кăтартатпăр. «Хыпар», «Çамрăксен хаçачĕ», «Чăваш хĕрарăмĕ», «Кил-çурт, хушма хуçалăх», «Сывлăх», «Тетте», «Самант», «Тантăш», «ЛИК», «Капкăн», «Тăван Атăл» республика тулашĕнче 2541 экземпляр саланаççĕ. Манăн шухăшăмпа – пирĕн çыхăнусем йĕркеллĕ, туслă, килĕшӳллĕ.

**– Республика шайĕнчи чăваш хаçат-журналне «Хыпар» Издательство çуртне пани «чĕлхене пĕтерсе хурать» тенине илтме пулать. Çакăнпа килĕшетĕр-и?**

– Çĕр процентĕпех абсурд, пуш супĕлтетӳ. Икĕ уйăх вун ултă хаçат-журнал кăларатпăр. Пĕр йышри кăларăмсем пĕр-пĕрне нимĕнпе те чăрмантармаççĕ. Лару-тăру лайăхланчĕ тени те йăнăш мар. Акă «Тантăшăн» хăйĕн автомашина пулман. Халĕ вĕсем эрнере икĕ-виçĕ хут вулакансем патне районсене транспортпа тухса çӳреççĕ. Çырăнтару кампанине хастар хутшăнаççĕ. «Тăван Атăл», «Капкăн» журналсем, «Хресчен сасси» хаçат та çавнашкалах ĕçлеççĕ. «Хыпарта» мĕнле пулнă çавăн пекех юлнă. Кашни кăларăмăн хăйĕн редакцийĕ, йышĕ. Пĕр-пĕрне чăрмантармасăр йĕркеллĕ ĕçлесе пыратпăр.

**– Чăвашлах ĕçĕнче пĕр шухăшлăх çукки мĕн патне илсе çитерĕ?**

– Эпĕ тулли пĕр шухăшлăха хирĕç, ку – шурлăх, нимĕрлĕх философийĕ. Çапах та тĕрлĕ шухăшлăх чиккине те пĕлмеллех. Картаран тухса каймасан пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать. Анчах эпир айăплама пуçлатпăр. Айăплатпăр, кӳрентеретпĕр. Эпĕ хисеплекен деятель темиçе хушамата асăнать: «Вĕсем Чăваш наци конгресĕн пуçĕнче тăнă», – тет. Ыттисем ăçта пулнă çак вăхăтра? Тепĕр çирĕм-вăтăр çынна мĕншĕн пăрса хăвармалла? Вĕсене мĕншĕн аса илместпĕр? *А* тесен *ă* та темелле. Çавăнпа тĕрлĕ шухăшлăх, тавлашу кирлĕ. Анчах пирĕн тавлашу урăхла йĕрпе пырать çав . . . Хамăр кăна чаплă, шапшурă, хитре. Лешсем вара хуп-хура, таса мар, пуриншĕн те айăплă, нимĕн те тумаççĕ пулса тухать.

**– Чăваш наци конгресĕн халĕчченхи ĕçне мĕнле хаклатăр?**

– ЧНК 21 çул ĕçлет. Ăна тĕрлĕ тапхăрпа хакламалла. «Хыпар» хаçатра Атнер Хусанкайран илнĕ интервью тухрĕ. Унта вăл тĕрĕсех палăртать: малтанхи тапхăрта ЧНК политикăна хиврен хутшăннă, тĕнче шайĕнчи конференцисене тухса çӳренĕ. Тĕслĕхрен, Тĕнчене тухайман халăхсен организацийĕпе (ТТХО) килĕштерсе ĕçленĕ. ТТХО – Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине (ПНО) кĕмен халăхсен пĕрлĕхĕ. ПНОна патшалăхсем çеç кĕреççĕ, çав шутра темиçе пин çынлисем те.

**– Хутшăнусем татăлчĕç терĕр. Çĕнĕрен йĕркелеме пулмасть-и?**

– Малтанхи çулсенче питĕ хастар ĕçленине палăртрăм ĕнтĕ. Атнер Хусанкая ун чухне ТТХО Генеральнăй Ассамблейин председателĕн пĕрремĕш çумне суйланăччĕ. Ăна председателе те суйласшăнччĕ, анчах унăн Гаагăра пурăнмаллаччĕ. Çавăнпа та Атнер Петрович килĕшмерĕ. Кайран хăй тĕллĕн, паллах, ЧНК ячĕпе, хăйĕн укçипе сахал мар кайса çӳрерĕ. Шел те, ЧНК çак ĕçрен пăрăнчĕ. Тĕп сăлтав – укçатенкĕ çукки. Пысăк взнос тӳлемелле. Кам парать? Çак ыйтăва тепĕр хут çĕклемелле, ĕçе йĕркелесе ямаллах. Пирĕн тĕрĕк тĕнчипе те хутшăнусене лайăхлатмалла. Унта чи малтанах культурологи ыйтăвĕсене сӳтсе яваççĕ.

**– Аслă пухура ЧНК президентне суйламалла. Сирĕн шухăшăрпа – унăн мĕнлерех пулмалла? Çак вырăна тивĕçлĕ çын кам?**

– Ку ыйтăва юпан 26-мĕшĕсенче татса парăпăр. Манăн хамăн палăртнă кандидатура пур. Анчах ун пирки «Хыпар» хаçатра каламастăп. Хаçат страницисенче вăл е ку кандидатурăна сӳтсе явни йĕркеллĕ мар. Ку патшалăх хаçачĕ общество организацине вăл е ку çынна сĕнме хистени пулĕччĕ. Кандидатсене делегатсен сĕнмелле, дискусси Аслă пуху аудиторийĕнче иртмелле.

Мамăн шухăшăмпа – президентăн чи малтан хăюллă, йăрă пулмалла. Ытти ертӳçĕ пекех кашни кун ЧНК офисĕнче лармалла. Паллах, вице-президентсене, ĕçтăвкома ĕçлеттермелле. Патшалăх тытăмĕсемпе çыхăну тытмалла.

**– Сире çак должноçа йышăнма сĕнес тĕк ĕçе мĕнрен пуçлăттăр?**

– Пĕрремĕшĕнчен, эпĕ президент пулма килĕшместĕп. Мана хăй вăхăтĕнче сĕннĕ. Вăл – манăн ĕç мар. Манăн ĕç-пурнăç çапах та тĕпрен-кăкран – журналистика. Пирĕн халĕ 16 кăларăм. Вĕсемпе куллен ĕçлемелле.

Теори тĕлĕшĕнчен илсен... Президент пулас тăк хам тавра чăн чăваш чунĕллĕ, хăюллă, чăвашлăхшăн хыпса çунакан, маттур çынсене пухăттăм. Тĕрлĕ шухăшлă пулччăр вĕсем. Пĕр вице-президент капла шухăшлатăр, тепри ăна хирĕç калайтăр... Президент çумĕнче вăл е ку ыйтăва тĕрлĕ шухăшлăн сÿтсе явакан, усăллă дискуссире чи кирлĕ «тĕшĕ» тупаякан йыш пулмалла. Ĕçтăвкомăн канăва, вăхăта пăхмасăр питĕ вирлĕ ĕçлемелле. Чăваш наци конгресĕнче талăкăн кирек хăш сехетĕнче те çутă пулмалла. Çĕрле, тен, дежурнăй ларĕ. Пирĕн çĕр-шывра тĕрлĕ вăхăт тăрăхĕнче пурăнакансем пур. Çакна та шута илмелле. «Çутă» сăмахра ытарлăх та пур.

**– Республика тытса пыракан чĕлхе политики тивĕçтерет-и?**

– Эпир халĕ федераци стандарчĕсемпе ĕçлетпĕр. Мускав мĕн ярса парать – çавна пăхăнатпăр. Мĕнле пулса тухрĕ-ха? Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетĕнчи тÿлевсĕр (бюджет) вырăнĕсене «Хыпар» хаçат «шав çĕкленипе» çеç сыхласа хаварайрăмăр. Шел, паллах, çак факультет хăй тĕллĕн упранса юлаймарĕ. Çакăншăн ЧНКна айăпламалла-и? Çук-тăр. Патшалăх тытăмĕсен çине тăмаллаччĕ.

Чăн чăваш ялĕнчех ачасем вырăсла калаçнине (перкелешнине мар) пĕрре мар асăрханă. Пĕр ялта ачаран: «Эс чăваш ачи-и?» – тесе ыйтатăп. «Аха», – тет. «Аçу-аннÿ ăçта ĕçлет?» – «Анне – доярка, атте – механизатор», – ансат хурав. «Апла мĕншĕн вырăсла калаçатăн?» – «Аттепе анне хушаççĕ те . . .». – «Шкулта чăвашла вĕрентеççĕ-и?» – пĕлес килет манăн. «Вĕрентеççĕ. Эпĕ вĕренместĕп», – тет ача.

Пĕтĕмлетÿ мĕнлерех? Чăваш ялĕнче «акцент синдромĕллĕ», вырăсла тĕрĕс калаçаймасран хăракан чăваш ачине ÿстеретпĕр. Кунашкалли пĕр ялта кăна пулсан-и? Район центрĕсенче пуринче те тенĕ пекех чăваш ачисем вырăсла кăна калаçаççĕ. Хăрушлăх çакă таван чĕлхемĕршĕн.

**– Юлашки çырав чăваш халăхĕн шучĕ чакнине катартрĕ. Çакă васкавлă йышăнусем тумалли пирки каламасть-и?**

– Социологи – хайне евĕрле наука та, практика та. Çырав – социологин пĕр пайĕ. Çырав çапах та ыйтăм кăна мар. Вăл – анлă кампани, çав тери пĕлтерĕшлĕ ĕç.

Манăн çапларах иккĕленÿ пур. 2002 çулхи çыравра Раççей Федерацийĕн статистика тытăмĕ нацилĕхе кăтартмалла мар тесе тĕллевлĕн хушу панă. Тутарсем, пушкăртсем çакна пăхăнман. Чăваш Республикинче яланхи пекех чыс парса – итлерĕç. Эпир çав вăхăтра нацилĕхе кăтартмасăр питĕ йышлăн «çухалтăмăр» ахăр. 2010 çулхи иккĕмĕш çухату малтанхи çыравăн синкерлĕ ахрăмĕ пулчĕ тесе шухăшлатăп.

Паллах, демографи сăлтавĕсене те сирсе ывăтаймастăн. Сăнăр-ха: çемьере пĕр е ике ачаран ытла мар. Ватăсем урăх тĕнчене каяççĕ. Çуралакансем сахалрах, вилекенсем çуралакансенчен ытларах пулсан халăх йышĕ чакасси паллă Ку – пĕрремĕш инкек. Иккĕмĕшĕ: вырăс чĕлхин витĕмĕ питĕ пысăк. 15–20 çул каяллахине аса илер-ха. Ун чухне телекуравăн виçĕ каналĕччĕ-ши... Халĕ вĕсен шутне специалистсем çеç пĕлеççĕ ахăр. Интернет пĕтĕм çĕрте. Унти информаци йăлтах вырăсла. Кунсăр пуçне вырăсла пин-пин хаçат-журнал тухать. Хыпарлавăн çак океанĕнче сахал йышлă халăхсен чĕлхисен мĕнле упранса-тытăнса юлмалла? Халăх йышĕ чакнăшăн хăшĕ-пĕри ЧНКна урăм-сурăм айăплать. Пĕри вара «Конгресс ертÿçисен харакири тумалла» тет. Патша саманинче чăвашсен йышĕ ÿссех пынă. Атьăр, апла, патшасене Чăваш халăх паттăрĕн ятне парар. Совет саманинче наци конгресĕ пулман, националистсене тĕрме-лагерьте çĕртнĕ. Çав вăхăтрах пирĕн йыш хушăнсах пынă. Ун чухне пурнăç условийĕсем хальхинчен лайăхрах пулнă тесе калама çук.

Манăн çак сăмахăмсем, паллах, çиелтен тунă тишкерÿ çеç. Пирĕн специалистсен (социологсен, этнологсен . . .) ятарлă тĕпчев ирттермелле те . . . Ку ыйтупа ЧНК пуçаруçă пулма пултарать. Анчах республика влаç тытăмĕсене тĕплĕ анализ кирлĕ-ши?

**– Хальхи вăхăтра уйрăмах мĕншĕн кулянатăр?**

– Пирĕн, «хыпарçăсен», яланах мĕншĕн те пулсан чун ыратать. Чĕлхене сыхласа хăварасси канăçсăрлантарать. Хальхи вăхăтра культура хухсах пырать. Пирĕн халĕ чăваш Вăйии çук. Акатуй ячĕшĕн çеç иртет – хăйĕн чăн канонĕсемпе мар (Николай Егоров профессортан ыйтăр). Кăçал ăна йĕркелеме хăтланса пăхрăмăр-ха. Тавтапуç правительствăна, ЧНКн, «Хыпарăн» чĕнĕвне илтрĕ, республика Пуçлăхĕ уява хăй те хутшăнчĕ. Иккĕленместĕп: тепĕр çул тата вăйлăрах пулать.

Чăваш туйĕ çук. Эпĕ малтан аптраса шухăшлаттăм: Валерий Яковлев режиссер Чăваш драма театрĕнче «Ялта» драмăпа сезон уçать, унпах вĕçлет. «Ялта» спектакльте чăваш туйне туллин кăтартса пама тăрăшнă. Чăваш туйĕн йăли-йĕркине сыхласа хăварас, çитĕнекен ăрăва унпа сцена çинче те пулин паллаштарас тени ĕнтĕ.

Тата мĕн çук пирĕн? Наци кухни, тумĕ, музыка инструменчĕсем çук... Пÿремĕч, шăрттан тăваççĕ-ха. Ытти ăçта? Тÿпеттее (тюбетейка) пушкăртсемпе тутарсене «сутса» янă... «Рехмет» (тавтапуç) сăмаха та. Араб чĕлхинчен кĕнĕскерпе чăвашсем пин çул ытла усă курнă мар-и-ха? Пĕтĕмпех каялла тавăрма пулать-и? Хамăртан килет.

Валентина БАГАДЕРОВА калаçнă.
*«Хыпар», 26.10.2013, 206–207№.*

# 2013, юпа, 26: VIII Аслă пуху



VIII Аслă пуху делегачĕсемпе хăнисем.2013, юпа, 26.

## ВЫБРАН НОВЫЙ ПРЕЗИДЕНТ ЧНК

*В субботу, 26 октября, в Чебоксарах состоялся съезд Чувашского национального конгресса. Новым президентом организации был избран бизнесмен и депутат Госсовета Чувашии от «Единой России» Николай Угаслов, передает корреспондент «Ирӗклӗ Сӑмах».*

На выборах было 245 делегатов, 168 из них проголосовали за Угаслова. 43 делегата проголосовали за Николая Лукианова. И.о. президента ЧНК Валерий Клементьев взял самоотвод и призвал голосовать за Угаслова.

На съезде был любопытный момент, когда филолог Виталий Станьял, ранее поддержавший кандидатуру Лукианова, взял слово и заявил буквально следующее: «Обоих [Лукианова и Угаслова] хорошо знаю. Оба достойны. Лукианов писал первые документы ЧАП и ЧНК... Но вижу, что за него здесь у делегатов будет недостаточно голосов....» После этого он спросил у Угаслова: Если вас выберут, примете ли вы нас обратно в ЧНК?».

Угаслов пообещал Станьялу пост главы комитета по науке и культуре, а Лукианову – отдел права. Позицию Станьяла раскритиковал писатель Анатолий Кибеч.

Ранее Угаслова называли как возможную кандидатуру на пост президента организации. Однако в личных разговорах он отрицал, что у него есть планы возглавить ЧНК.

Президент Чувашского национального конгресса избирается на четыре года.

Чувашская интернет-газета
*«Ирӗклӗ Сӑмах» (Свободное слово), 27.10.2013.*

## ЧУВАШСКИЙ НАЦИОНАЛЬНЫЙ КОНГРЕСС ПРИОБРЕЛ ПРЕЗИДЕНТА И УТРАТИЛ ИЛЛЮЗИИ

*Отчетно-выборный съезд этой общественной организации внешне прошел спокойно, но его участники не смогли преодолеть внутренние противоречия.*

В условиях беспрецедентно жесткого пропускного режима собирались делегаты на съезд Чувашского национального конгресса. Невесть откуда взявшаяся охрана решительно пресекала любые попытки «посторонних» проникнуть в здание театра чувашской драмы, где состоялся отчетно-выборный форум этой общественной организации. Впрочем, как уже сообщала «**Правда ПФО**», для многих **остались неясными и принципы**, по которым формировался делегатский корпус. Одни организации получили право прислать своих представителей, другие были лишены этой возможности. И все же без сюрпризов не обошлось. В последний момент на пост президента ЧНК была выдвинута кандидатура владельца фирмы «Тус», депутата Госсовета **Николая Угаслова**, который и одержал убедительную победу в ходе голосования. Эксперты полагают, что ему предстоит решать непростые задачи по преодолению глубинных противоречий в этой массовой общественной организации.

Никогда прежде форумы ЧНК не проходили в условиях столь строгого режима. Крепкие молодые люди в безупречных костюмах на входе в театр чувашской драмы отсекали всех, кто не имел персональных приглашений на руках. Организаторы съезда накануне предупреждали, что все желающие не смогут попасть в зал, но некоторые энтузиасты все же пытались стать очевидцами этого события. Кое-кто даже специально ради этого приехал из других регионов, но и им не делалось исключения.

«Фейс-контроль был настолько жестким, что дело доходило до абсурда, – рассказал «Правде ПФО» известный культуролог и блогер Андрей Федоров. – **При мне не хотели пропускать министра информполитики республики Валентину Андрееву**. Почему-то её фамилии не оказалось в списках охранников, а удостоверение министра, видимо, не внушало доверия. Не знаю, о чем они думали, но мог зародиться скандал». Министра все же пропустили. Но демонстративно закрытая форма проведения съезда вызвала немало недоуменных откликов.

«Мой папа, тогдашний депутат Верховного Совета Чувашии, рассказывал, для чего создается ЧНК, – поделился с «Правдой ПФО» **депутат Чебоксарского городского собрания Григорий Данилов**. – Объяснял, что это организация призвана объединить всех чувашей, проживающих не только в России, но и по всему миру! Ключевое слово – объединить! И тогда действительно ЧНК объединял людей... Двери Конгресса были открыты, и все массовые мероприятия проходили открыто. Каждый желающий мог принять в них участие. Думаю, что нынешним руководителям ЧНК надо вспомнить, для чего создавалась всечувашская общественная организация».

Мало того, что на входе стоял внушительный кордон. Немалые силы были стянуты снаружи здания. «Одних милицейских «уазиков» я видел у театра восемь штук, и еще три автомобиля с омоновцами, – рассказал «Правде ПФО» приглашенный на съезд предприниматель **Александр Самакин**. – Впрочем, на своем предприятии я тоже проводил бы собрание в жестком стиле. Хотя ЧНК, конечно, это не частная лавочка».

Некоторые наблюдатели посчитали, что все эти меры были предприняты в связи с неочевидностью исхода выборов президента ЧНК. Ведь на этот пост со всей серьезностью претендовал **юрист Николай Лукианов**, известный своими радикальными взглядами, до сих пор не отказавшийся от мечтаний по созданию самостоятельного чувашского государства.

Но существует и другая трактовка событий. «Все шаги по усилению режима безопасности были необходимы, поскольку на съезд пытался проникнуть со свитой издатель газеты «Взятка» и знаменитый яйцеметатель **Эдуард Мочалов**, – сообщил «Правде ПФО» один из членов оргкомитета съезда. – Он раньше демонстративно на глазах прессы метал яйца в здания прокуратуры, Верховного суда. Запросто и в театре мог закидать ими президиум, в котором находились глава республики **Михаил Игнатьев**, спикер парламента **Юрий Попов** и другие официальные лица. Мочалов получил бы свои пятнадцать суток, а нам бы пришлось отмываться от вселенского позора».

В зале тем временем съезд проходил довольно спокойно. Президент ЧНК **Геннадий Архипов** знал, что пребывает в этой должности последний день, и его отчетный доклад о четырех годах работы занял всего три минуты. Зато достаточно пространно выступил вице-президент конгресса **Николай Угаслов**, чье повышение выглядело уже очевидным.

«Он до последнего момента отказывался баллотироваться на руководящий пост ЧНК, – рассказал «Правде ПФО» источник в окружении этого строительного олигарха. – Но ситуация требовала решительных мер. Певец **Валерий Клементьев**, которого администрация главы республики прочила в президенты ЧНК, мог проиграть выборы радикалу **Николаю Лукианову.** Требовалась авторитетная кандидатура, способная победить без всяких вопросов».

Необходимо заметить, что еще в ходе предварительного обсуждения кандидатур немалая часть активистов ЧНК смотрела в сторону крупного бизнеса. «Конечно, нам хотелось бы, чтобы Конгресс возглавил солидный предприниматель, – заявлял «Правде ПФО» один из аксакалов **Виталий Станьял,** – чтобы не ходил с протянутый рукой, выпрашивая у властей копейки на различные мероприятия».

В этом отношении сейчас все в порядке. Николай Угаслов не только убедительно победил Николая Лукианова, набрав 168 голосов при 245 делегатах съезда. В число вице-президентов конгресса вошел и другой магнат – **Олег Мешков**, контролирующий пивоваренную фирму «Букет Чувашии» и занимающий ныне должность заместителя

председателя Госсовета республики. В первый эшелон выдвинулись и другие представители бизнеса.

«Коллективное руководство ЧНК будет теперь напоминать теневое правительство, – заявил «Правде ПФО» один из участников съезда. – Угаслов планирует создать почти полтора десятка комитетов по различным отраслям, начиная с вопросов поддержки бизнеса и кончая культурой с прессой. Будем считать, что эпоха национального романтизма завершилась полной победой национальной буржуазии».

В то же время некоторые активисты ЧНК из старой гвардии, оставшиеся не у дел, открыто выражают свое недовольство и заявляют о необходимости создания альтернативной организации национального толка.

Александр БЕЛОВ.
*«Правда ПФО», 28.10.2013.*

## ПИРĔН ВĂЙ – ПĔРЛĔХРЕ

*Пытармастăп: Чăваш наци конгресĕн VIII Аслă пухăвĕ çакăн пек лăпкăн иртсе каясса шухăшламанччĕ. Вăл хĕруллĕ, тавлашуллă пуласса системе рекен самант чылайччĕ. «Хыпарта» та тĕрлĕ шухăша палăртакан статья сахал мар пичетленчĕ, Интернетра та ЧНКн пулас президенчĕн кандидачĕсене «шĕкĕлчерĕç». Тĕлĕнмелле те – ытла та нумайăнччĕ çав спискра элтепер тилхепине алла илес текенсем.*

Акă кĕтнĕ кун та çитрĕ. Юпа уйăхĕн 26-мĕшĕсенче тĕп хулари К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче чăваш наци конгресĕн VIII Аслă пухăвĕ ĕçлерĕ. Раççейĕн 26 субъектĕнчен тата чикĕ леш енчи пилĕк çĕр-шывран 282 делегат килнĕ.

Президиумра – Чăваш Республикин Пуçлăхĕ **Михаил Игнатьев**, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателе **Юрий Попов**, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ **Геннадий Архипов**, ЧНК Ваттисен Канашĕн ертӳçи **Петр Ивантаев**, ЧНК вице-президенчĕ Валерий Клементьев, ЧНК вице-президэнчĕ **Николай Угаслов**, Пенза облаçĕн делегачĕ **Анатолий Архипкин** тата Пушкăрт Республикин делегачĕ **Людмила Мурманская**.

Халăхăн лайăх, пархатарлă йăла пулнă: аслă ăрурисем çамрăксене пил панă. Çав сăмахсенче вĕсем чăвашра чĕрĕлĕх, пысăк йыш, çамрăксене хастар пулма, йăла-йĕркене малалла тытса пыма суннă.

Хальхинче те авалран килекен йăла пирки манмарĕç, ЧНК Ваттисен Канашĕн мухтавлă çыннисем **Никифор Наумов**, **Вера Кузьмина**, **Анатолий Кибеч** Аслă пухăва килнисене пил пачĕç. Делегатсен пĕр ушкăнĕ тĕп хулари «Шупашкар: 500 çул» культурăпа кану паркĕнчи Юпана пуç тайма тухса кайрĕ. Чăваш наци конгресĕн гимнне – «Асран кайми . . .» юрра – ура çине тăрса юрларĕç. Залри халăха сцена çинчен Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕн хорĕ пулăшса пычĕ.

**Кун йĕркинчи ыйтусем: ЧНК президенчĕн Геннадий Архиповăн сăмахĕ тата Николай Угасловăн доклачĕ; ЧНК ревизи комиссийĕн отчечĕ; суйлав ыйтăвĕсем.**

ЧР Пуçлăхĕ **Михаил Игнатьев** хăй тытса пыракан патшалăх политикинчи ыйтусенчен пĕри наци ăс-хакăлне упраса хăварасси пулнине палăртрĕ. Çавна май республикăра ку енĕпе мĕнле ĕçсем туса ирттернине каларĕ. «...Культура ыйтăвĕсене çĕклес, литературăна аталантарас енĕпе патшалăх нумай пулăшать. Тăватă томлă чăваш энциклопедийĕ, 32 пин сăмахран тăракан икĕ томлă «Вырăсла-чăвашла» словарь кун çути курчĕç. 2011 çултан пуçласа Чăваш Республикин официаллă сайтĕнче республикăн тĕп хыпарĕсене чăвашлатма пуçларăмăр, – терĕ Михаил Игнатьев. – Юлашки çулсенче тулашри чăвашсемпе çыхăнăва упрас тата аталантарас тĕлĕшпе нумай ĕç тунă.

Çапах та ку çителĕксĕр... ЧНК VIII съезчĕ чăваш наци аталанăвне çеç мар, пирĕн халăхăн туслăхне çирĕплетес ĕçе пысăк тӳпе хывса хăварасса шанатăп».

Михаил Игнатьев çавăн пекех патшалăх наградисене пачĕ. Тĕп хулари 20-мĕш шкулта тăван чĕлхене вĕрентекен Валентина Лисицына «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ» ята тивĕçрĕ. Чăвашлăх ĕçĕнчи хастарсен пĕр ушкăнне Тав çырăвĕпе хавхалантарчĕ. ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ **Юрий Попов** та çак кун чăваш халăх кун-çулĕнче йĕр хăварасса шаннине палăртрĕ. Вăл Чăваш наци конгресĕ чăмăртаннă тапхăра аса илчĕ, ЮНЕСКО 2010 çулта хатĕрленĕ Атлас пирки чарăнса тăчĕ (сăмах унта çĕр çинчен пачах çухалма пултаракан халăхсем пирки пырать. Шел те, çав йышра чăвашсем те пур). Çапла ан пултăр тесен мĕн тумалла? Республикăра кăна тăван чĕлхене 130 пин чăваш ăнланмасть. Тулайри йăхташсем тата вун-вун пин... Эдуард Бахмисов, Анисия Игнатьева, Юрий Михайлов, Надежда Иванова пек делегатсен хастарлăхне, ăнтăлăвне пула (Юрий Попов вĕсене ЧР Патшалăх Канашĕн Хисеп хучĕпе чысларĕ) чăваш ĕçĕ йывăрпа пулсан та малалла пырать.

ЧНК президенчĕн **Геннадий Архиповăн** сăмахĕ хальхинче кĕске пулчĕ. Тĕп доклада **Николай Угаслов** вице-президент хăй çине илнĕ. Геннадий Николаевич вара 15 çул пĕрле ĕçленĕ, чăвашлăхшăн вăйне-халне шеллемен хастарсене тав турĕ. «Тен, кӳрентернĕ те пулĕ хăшне-пĕрне, çакăн пек ĕçре тавлашусăр тĕрĕслĕх çуралмасть», – терĕ.

Николай Угаслов та мĕн туни пирки тĕплĕн чарăнса тăрас темерĕ (вăл куç умĕнчех-çке), çĕнĕ тĕллевсемпе паллаштарчĕ. Çавсене «ЧНКн чăваш халăхĕн этника хăйсене  евĕрлĕхне сыхласа хăварас енĕпе ĕçлемелли программăна» кĕртнĕ. Пысăк вăл, социаллă пурнăçпа политикăра, экономикăра, ăслăлăхра, вĕрентӳ ĕçĕнче, этнокультурăра пурнăça кĕртмелли тĕллевсене палăртнă.

Программа, ман шухăшăмпа, ЧНКн хальхи тилхепине тытса тăракансен оппоненчĕсене те кăсăклантарчĕ. Тухса калаçакансем вăл пысăк пĕлтерĕшлĕ, пуласлăхра тĕпе хурса ĕçлемелли тĕллевсем пулнине палăртрĕç.

Наци вăйĕ – халăх пĕрлĕхĕнче. Вăл çук пулсан, пĕр-пĕрне кĕвĕçетпĕр, курайммастпăр, ура хуратпăр пулсан нимĕнле программа та, тĕллев те пире пулăшас, çăлас çук.

Доклада сӳтсе явнă май Тутарстанри чăваш наци культура автономийĕн председателĕ **Константин Яковлев** вырăнти наци ушкăнĕсем влаçпа килĕштерсе ĕçлесси пирки чăранса тăчĕ. Унăн сĕнĕвĕсем: ЧНК Президиумĕн регионсенчи чăваш автономийĕсемпе, пĕрлĕхĕсемпе, обществисемпе пĕр планпа ĕçлемелле; мухтавлă ентешсен юбилейĕсене вырăна тухса пĕрле паллă тумалла; Çутта кăларуçăн Иван Яковлевăн тăван ялĕ Кăнна Кушки пĕтĕм чăвашăн «Мекки» пулса тăмалла.

Кăнна Кушки пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕ Константин Яковлев. Унăн шухăшĕпе – унта кирек кама илсе пырсан та намăс пулмĕ. Ялти усламçăсен вăйĕпе Кăнна Кушкинче кун çути курнă паллă çынсене пуç тайса Асăну комплексĕ туса лартнă, çак кунсенче Иван Яковлев пурăннă çурт тĕлĕнче часавай уçнă.

**Екатерина Попова** (Челябинск) çамрăксен, тăван чĕлхене пĕлмен, хутăш çемье çавăрнă чăвашсен ячĕпе калаçрĕ тенĕ пулăттăм. Чăвашла пĕлменни вĕсен айăпĕ мар, инкекĕ. Кунашкал форумсенче куçару майĕсемпе – «наушниксемпе» – тивĕçтерни çамрăксене хавхалантарнă пулĕччĕ терĕ. Екатеринăна илес пулсан, вăл çине тăнипе Челябинскра чăваш шкулĕ йĕркеленĕ, ывăлне, çурма нимĕçе, чăваш юррисене вĕрентет.

**Виталий Станьял** хускатнă çивĕч ыйтусенчен хăшĕ-пĕри çакă: чăваш наци энциклопедине 50 томпа кăларасси; чăваш этнокультура кермене тăвас ыйту татăлманни; ЧНК Уставĕ паянхи куна тивĕçтерменни; наци кадрĕсене хатĕрлесси.

**Лидия Григорьева** делегат Эстонири Нарвăран килнĕ. Унта пурĕ те 102 чăваш çеç пурăнать. 64 пинлĕ хулара çак кăтарту пысăках та мар,

çапах та йăхташсем хăйсем пирки ырă енĕпе калаçтараççĕ. «Нарспи» обществăна йĕркеленĕренпе кăçал 10 çул çитнĕ. Çавна май Акатуйирттернĕ. «Нарспи» фольклор ушкăнне Нарвăра çеç мар, Таллинра та, Эстонири ытти хулара та лайăх пĕлеççĕ. Финляндие те çитсе килнĕ ентешсем. Ансамбльте юрлакансен тумĕ паян çĕлетнĕ çи-пуç мар, асламăшĕсемпе кукамăшĕсен арчисенче упранакан капăр кĕпесем. Çавăнпа тата та кăсăклă вĕсем куравçăсемшĕн.

**Геннадий Храмов** делегат (Красноярск) Николай Угаслов вице-президент паллаштарнă Программăна ырларĕ. Палăртнă ĕç тухăçлă пуласси ЧНК влаçпа пĕр чĕлхе тупса ĕçленинче те терĕ.

**Владимир Сваев** (Чĕмпĕр), **Анатолий Иголкин** (Удмурт Республики), **Николай Дмитриев** (Екатеринбург), **Анатолий Ефимов** (Чул хула), **Юрий Михайлов** (Пушкăртстан), **Владислав Волков** (Чăваш Ен), ыттисем тĕрлĕ ыйтăва хускатрĕç. Культура экономикăпа тӳрремĕнех çыхăннине, тĕнчене çĕнĕлле курмалли пирки, чылай ĕçе ăслăлăх, наука шайĕнче пурнăçламаллине аса илтерчĕç.

Аслă пуху делегачĕсем, пĕлтерĕшлĕ мĕн пур сĕнĕве кĕртсе, резолюцисем йышăнчĕç.

Юлашки ыйту – ЧНК президентне суйласси. Сасăлавра темиçе кандидат пуласса кĕтнĕччĕ. Тутарстанри чăваш наци культура автономийĕн председателĕ Константин Яковлев Николай Угаслова сĕнчĕ, ЧНК Ваттисен Канашĕн членĕ Анатолий Кибеч – Николай Лукианова. Тепĕр кандидат та пулчĕ: Валерий Клементьев. Ăна Сарă ту облаçĕнчи чăваш наци культура автономийĕн председателĕ Сергей Васильев сĕнчĕ, анчах та Валерий Леонидович хăйĕн кандидатурине каялла илчĕ, Николай Угасловшăн сасăлама ыйтрĕ. Çапла майпа сасăлава Николай Угасловпа Николай Лукианов хутшăнчĕç. Ĕлĕкхи пухусенчи пек шăв-шав çĕкленмĕ-ши тенĕччĕ, апла пулмарĕ. Делегатсем кашниншĕнех сасăларĕç. Нумайрах сасă пухса (168) Николай Угаслов суйланчĕ. Тавах Николай Лукианова, хăйĕн оппонентне саламлама, ăна чăвашлăх ĕçĕнче пулăшма хатĕррине пĕлтерчĕ. Çапла туса вăл наци вăйĕ пĕрлĕхре пулнине тепĕр хут çирĕплетрĕ.

Çав кунах ЧНК VIII Аслă пухăвĕ çĕнĕрен суйланă Мăн Канаш ЧНК тытăмĕсене çирĕплетрĕ. Президент сĕннипе вице-президентсене суйларĕ: **пĕрремĕш вице-президент – Валерий Клементьев (юлашки тапхăрта ЧНК президенчĕн тивĕçĕсене пурнăçланă), вице-президентсем – Петр Ивантаев (Ваттисен Канашĕн ертӳçи пулнă), Алексей Леонтьев («Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ, халĕччен те вице-президент пулнă), Олег Мешков (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ), Константин Яковлев (Тутарстанри чăваш наци культура автономийĕн ертӳçи).**

Мăн Канаш Президиумĕн çĕнĕ йышне тĕрлĕ сферăра ĕçлекен комитетсен шутне тата йышне çирĕплетме хушса хăварчĕç. Президиумăн çавăн пекех ЧНК Уставне улшăнусем кĕртмелле. Ăна ЧНКн черетлĕ Аслă пухăвĕнче çитес çул сӳтсе явса йышăнмалла.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 29.10.2013, 208№.*

## САМООТВОД И ПРИЗНАНИЕ: ИЗБРАН НОВЫЙ ГЛАВА ЧУВАШСКОГО НАЦИОНАЛЬНОГО КОНГРЕССА

Избран новый лидер Чувашского национального конгресса (ЧНК). Им стал депутат Госсовета республики, директор строительной организации 61-летний **Николай Угаслов**, который до этого являлся вице-президентом ЧНК. Его поддержали 168 делегатов – более 80% проголосовавших. Отметим, сложность состояла в том, что выборы признаются состоявшимися, если кандидат набирает две трети голосов. Легитимность выборов подтвердил и соперник Угаслова – **Николай Лукианов**. При этом на многочасовом съезде дебаты были бурными, с оттенком скандальности и провокации, передает корреспондент ИА REGNUM . Сама атмосфера придавала мероприятию особый статус и чувствовалась рука организаторов. Возле входа было столпотворение, которое бывает на хороший спектакль. Аккредитованных журналистов и приглашенных сверяли по списку – даже министров. У входа в партер Чувашского драмтеатра дежурили крепкие парни, опытным взглядом фильтрующие делегатов с опознавательными бейджами. Всего в съезде приняли участие делегаты из 26 регионов Россиии, а также Белоруссии, Казахстана, Украины, Франции и Эстонии. По оценкам наблюдателей, съезд прошел четко, в деловой обстановке, чему немало способствовал выбранный для руководства съездом президиум, возглавляемый авторитетным промышленником **Петром Ивантаевым**. Он умело режиссировал ход событий, выходил из самых щекотливых и провокационных ситуаций.

Печален и немногословен был **Геннадий Архипов**, который в течение 16 лет возглавлял Чувашский национальный Конгресс. Весь его отчет о проделанной работе был сведен к десяти минутам, где он подчеркивал важную роль ЧНК, говорил о важности сохранения чувашского языка и позиционирования национальной культуры, благодарил за совместную работу. По краткости и идеологии отчет президента ЧНК соперничал с выступлением главы республики **Михаила Игнатьева**, который обратился к участникам съезда с приветственным словом. Также Геннадий Архипов в очередной раз попросил руководителя региона о здании для ЧНК – хотя ранее сообщалось, что данный вопрос уже решен.

Вице-президент ЧНК **Николай Угаслов** озвучил многостраничный перечень задач, стоящих перед нацконгрессом. Основная мысль – консолидация всех представителей чувашского народа вне зависимости от места их нынешнего проживания, а также сотрудничество с диаспорой не только на основе культурного взаимодействия, но и торгово-экономического.

В ходе съезда делегаты поднимали вопрос о сохранении и изучении чувашского языка, сетовали на нехватку методических пособий и учебников, говорили о демографической проблеме, призывали повышать свои знания по истории и культуре чувашского народа. Было подчёркнуто, что нужно активнее использовать для популяризации и объединения интернет-ресурсы, особенно социальные сети. А также «не быть политически беззубыми» и включаться в работу по формированию государственной национальной политики. При этом зачастую в выступления поднимались одни и те же проблемы – в итоге съезд растянулся более чем на шесть часов.

Также давались оценки работе действующей команде ЧНК – от «двойки» до «удовлетворительно», хотя в общем хоре в адрес прежнего руководства было высказано немало добрых слов. **«Заслуга Чувашского национального конгресса уже в том, что мы сегодня собрались»**, – исходили из задачи-минимум отдельные делегаты съезда. Даже поступило предложение «просить перед Путиным» о правительственной награде для Геннадия Архипова.

Главным организационным вопросом повестки дня было избрание президента ЧНК. Выборам лидера главного общественного национального органа предшествовал выброс в информационное пространство публикаций всевозможного толка и деклараций, озвучивались имена кандидатов. В интернет-пространстве обсуждали пять кандидатур: члена президиума ЧНК **Константина Портнова,** бизнесмена и руководителя общественной организации «Сувар» **Владимира Тяпкина**, выпускника юрфака Казанского университета **Николая Лукианова,** подарившего Чувашии немало известных политиков, а также двух вице-президентов ЧНК – строителя и депутата **Николая Угаслова**, популярного исполнителя чувашских песен, представителя чувашского землячества Саратовской области **Валерия Клементьева**.

На самом съезде были выдвинуты трое – Угаслов, Лукианов и Клементьев. Клементьев взял самоотвод в пользу Угаслова, взвинтив интригу выборов. Это фактически предопределило результат конкурентной борьбы претендентов, хотя напряженность сохранялась до самого момента голосования еще и потому, что Николай Угаслов, четыре года назад также выдвигавшийся на пост президента ЧНК, тогда передумал и снял свою кандидатуру. На этот раз, сидя в президиуме, он, судя по сосредоточенному выражению лица и даже складывая руки в молитвенной позе, напряженно размышлял. Но свою кандидатуру не снял.

Эмоционально, но в целом аргументированно начали выступать один за другим участники съезда, убеждая отдать голоса за того или иного претендента. Причем один из выступающих выходил на трибуну дважды. Николай Лукьянов шел с девизом: **«Сильный ЧНК – сильная Чувашия! Сильная Чувашия – сильный ЧНК!»**. Николай Угаслов в выборном манифесте предложил прагматичную идею: структурировать ЧНК, создав профильные комитеты для более целенаправленной работы по направлениям. Вероятно, реализация такого подхода заставит увеличить и число привлекаемых к работе специалистов, и денежные затраты. Но конкретный и деловой подход понравился делегатам. В ходе обсуждения было озвучено мнение, что Угаслов, который возвел в этом году завод строительной керамики, сможет построить из этого кирпича и народный дом. Однако противники заметили, что стены-то возвести можно, но главное – внутренняя наполненность, содержание.

Перед самым голосованием, когда страсти в зале естественным образом накалились, один из делегатов вдруг из конца зала громко, театрально и не очень вежливо потребовал удалить из президиума руководителя администрации главы Чувашии **Александра Иванова** – на том основании, что тот пришел после процедуры голосования, утверждавшей его состав. Подтекст был рациональный: раз в президиуме – человек, за которого делегаты не голосовали, то результаты голосования впоследствии могут быть поставлены под сомнение. Формально требовательный делегат был прав, хотя его тон выдавал стремление закатить сценический скандал для СМИ. Петр Ивантаев не стал спорить, а поставил вопрос на голосование зала, который дружно подтвердил полную правомочность всех членов президиума. Юридический казус, грозивший судами и новыми перевыборами, был улажен в течение трех секунд.

Но требовательный делегат не унимался. Объективы фотоаппаратов и телекамер стали поворачиваться к кричащему источнику конфликта. Тогда был сделан ход конем, загасивший пыл «протестанта» и инцидент в целом: добродушным тоном, улыбаясь, спикер предложил ему... занять место в президиуме: «...Присоединяйтесь к нам, Герольд Михайлович!» Зал расхохотался, пафос ситуации испарился, как утренний туман, скандал завял на корню.

Еще одна драматичная сцена возникла, когда представительница делегации из Украины, едва сдерживая слезы, посетовала на то, что им не дали слова, хотя в секретариат были отправлены четыре записки. Ивантаев заметил, что время ограничено, не всем смогли предоставить слово, но все выступления, доклады и предложения просили отдавать в секретариат.

Действо в очередной раз накалилось, когда сценарий съезда начал корректироваться в режиме импровизации. Опытный **Виталий Станъял** высказал лестные слова в адрес Лукианова, но, вероятно, почувствовав настроение зала, на ходу поменял плановую тактику и одобрил обоих кандидатов, давая понять, что вполне возможно и даже желательно объединить достойных претендентов, их команды в рамках единого ЧНК. В ответ **Анатолий Кибеч,** сторонник Лукианова, устроил Станъялу довольно жесткую выволочку: выйдя на трибуну, он, обращаясь к нему как к близкому другу, раскритиковал его за компромиссную позицию «и нашим, и вашим».

В итоге в ходе голосования за Угаслова отдали голоса 168 делегатов, Лукианова поддержали 43 человека. Если учесть результаты голосования, можно сделать вывод, что Станъял оказался прав, в нужный момент предложив компромисс и создав тем самым принципиальную возможность участия команды Николая Лукианова в работе команды Николая Угаслова. Победитель даже предложил экс-сопернику возглавить правовой комитет ЧНК. Раскола не произошло.

Экс-ректор Чувашского госуниверситета **Лев Кураков** признал с трибуны, что такого делового, хорошо организованного съезда, с большим числом продуманных конструктивных выступлений у ЧНК еще не было, как не было и столь хорошо всесторонне подготовленных претендентов на пост президента общественной организации. Он также высказался в поддержку делового союза Угаслова–Лукианова.

Николай Лукианов воспринял поражение философски. Взяв слово, он поздравил Николая Угаслова с победой. Друзья-соперники обнялись, подтвердив тем самым отсутствие взаимных претензий и полную легитимность состоявшихся выборов.

Оригинал статьи:
http://www.regnum.ru/news/fd-volga/chuvashia/1725223.html
*29.10.2013.*

## ЧНК YIII АСЛĂ ПУХĂВĔН ЙЫШĂНĂВĔСЕМ

### Чăваш наци конгресĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен

Чăваш наци конгресĕн VIII Аслă Пухăвĕн делегачĕсем Президиумăн отчетлă докладне тата мандат комиссийĕн докладне сӳтсе явнă хыççăн Аслă Пуху çапла йышăнать.

**1.** Чăваш наци конгресĕн Президиумĕ VII Аслă Пухăвĕ хыççăн туса ирттернĕ ĕçсене «çителĕклĕ» тесе хак парас.

**2.** Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн  Раççей Федерацийĕн патшалăх наци политикин стратегине кашни кунри ĕçре тĕпе хумалла, çĕр-шыври тата Чăваш Республикинчи  халăхсен хушшинчи килĕшĕвне çирĕплетмелле.

Чăваш наци конгресĕн малашне тумалли ĕçсен  стратегине хатĕрлес енĕпе ятарлă ушкăн туса хумалла, ăна 2014 çулта çирĕплетмелле.

Чăваш наци конгресĕн Уставне улшăнусем кĕртес енĕпе ятарлă ушкăн туса хумалла, Уставăн çĕнĕ редакцине 2014 çулта çирĕплетмелле.

Чăваш Республикин патшалăх тата вырăнти органĕсемпе тачă çыхăну тытса чăваш халăхĕн хăй евĕрлĕхне, йăли-йĕркине, культурине тата чĕлхине малалла аталантарас енĕпе малашне те тĕллевлĕ ĕçлемелле. Çак ĕçе пурнăçлама патшалăх органĕсемпе тĕрлĕ учреждени ирттерекен конкурссене хутшăнса грантсем çĕнсе илес енĕпе тăрăшуллă ĕçлемелле.

Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче тата урăх çĕр-шывсенче чăваш наци культура ушкăнĕсемпе ĕçлĕ çыхăнăва анлăлатмалла, тĕнчери пĕтĕм чăвашсем валли уявсем, конкурссем тата фестивальсем ирттермелле. Конгресс Президиумĕн кашни çулах регионсенчи чăваш наци культура ушкăнĕсемпе ĕçлеме пĕрлештернĕ ĕç планĕ тумалла.

Чăваш халăх историне тĕпчес тата ăна халăхсен хушшинче сарас енĕпе ятарлă ушкăн туса хумалла.

Чăваш наци конгресĕ тунă ĕçе республика пурнăçĕнче анлăрах кăтартмалла: унăн хăйĕн ĕçне Интернетра тăтăшах çутатмалла, пресс-служба йĕркелемелле. «Чăваш тĕнчи» хаçата кăларса тăма республикăра финанс майĕсем тупмалла.

Чăваш писателĕсене халăхăн наци ăнланулăхне ӳстерме пулăшакан хайлавсем çырма хавхалантарас тĕллевпе ЧНКн тĕрлĕ номинаципе литература премине туса хумалла, ăна  авторсене  (авторсен ушкăнĕсене)  икĕ çулта пĕрре памалла.

**3.** Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствине ачасемпе çамрăксен хушшинче чăвашлăх туйăмне, тăван тавралăха тата çĕр-шыва юратас туртăма, чунлăха аталантарас енĕпе вăйлăрах ĕçлеме, чăваш çамрăкĕсем валли çулленех тĕрлĕ слет, форум, ытти тĕрлĕ ĕç ирттерме, çуллахи лагерьсем уçма, республикăра тата Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче чăваш чĕлхине аталантарас енĕпе тĕрлĕ конкурс, олимпиадăсем, çуллахи мероприятисем  ирттерме сĕнес.

**4.** Чăваш Республикин Культура, национальноçсен тата архив ĕçĕн министерствине сĕнес:

Шупашкар хула администрацийĕпе пĕрле Национальноçсен çуртне уçас ыйтăва татса пама;

республикăри тĕрлĕ халăха наци культура ушкăнĕсене тытса тăрас енĕпе пулăшмалли ĕçе (çурт, штат тата укçа енчен) анлăлатма;

республикăри вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен администрацийĕсемпе пĕрле республикăри культура çурчĕсенче фольклор ушкăнĕсем уçма, вĕсем валли кашни çулах конкурссемпе фестивальсем ирттерме;

республикăри халăхсен хушшинче чăвашлăха аталантарас, чăваш пĕлтерĕшне анлăлатас ĕçе вăйлатма;

республикăра Чăваш наци лицейĕсем уçас ĕçе хăвăртлатма;

чăваш писателĕсене пĕр союза пĕрлештерес ĕçе хăвăртлатма, унăн ĕçне патшалăхăн укçа-тенкĕ пулăшăвĕпе тивĕçтерме;

**5.** Республикăра вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен администрацийĕсене сĕнес:

чăваш чĕлхи Чăваш Республикин патшалăх чĕлхи пулнă май общество вырăнĕсене чăвашлăх туйăмĕпе тата чăваш чĕлхипе усă курса илемлетме;

кашни ача садĕнче чăваш фольклор ушкăнĕ уçма;

Чăваш наци конгресĕн вырăнти уйрăмĕсене чăвашлăха упрас тата аталантарас енĕпе ĕçленĕ чухне пулăшма;

**6.** Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствине сĕнес:

чăвашла массăллă информаци хатĕрĕсене тата чăваш журналистикине аталантарас енĕпе уйрăм программа йышăнма;

чăвашлăха упрас тата аталантарас ĕçе халаллана, чăваш халăхĕн паллă ывăлĕхĕрĕ çинчен каласа кăтартакан кĕнекесем ытларах кăларма;

радиопа телекурав кăларăмĕсенче чăваш чĕлхипе анлăрах усă курма, унта чăвашла спектакльсем ытларах кăтартма;

**7.** Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствине сĕнес:
ял хуçалăх производствине пулăшас тата аталантарас енĕпе ятарлă программа çирĕплетме;

ялта пурăнакансем, уйрăмах çамрăксен валли ĕç вырăнĕсем çителĕклĕ тума;

**8.** Чăваш Республикин Экономика министерствине промышленноçа аталантарас, ĕçлекен çынсен шалу виçине тата халăх пурнăç шайне ÿстерес, республикăран кадрсем тухса каяссине чакарас енĕпе ятарлă ĕçсем тума сĕнес.

**9.** Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствине халăх сывлăхне тата унăн шутне ÿстерес енĕпе тăвакан ĕçсене сарма сĕнес.

**10.** Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтне чăваш халăхăн тата Шупашкар хулин историне тĕпчес ĕçе анлăлатма, çак ыйтусемпе наука-практика конференцийĕсем, çавра сĕтелсем нумайрах ирттерме сĕнес. Çак ĕçре институтăн Раççей Федерацийĕн тĕрлĕ регионĕнчи наука учрежденийĕсемпе тачăрах çыхăну тытмалла.

**11.** Чăваш кĕнеке издательствине ача-пăча валли чăвашла илемлĕ кĕнекесем, вырăсла-чăвашла словарьсем, чăваш халăх историйĕпе культурине халаллана литература кăларас ĕçе анлăлатма сĕнес.

**12.** Чăваш Республикин Патшалăх Канашне Чăваш Республикин вырăсла хитре мар янăракан ял ячĕсене улăштарас енĕпе ятарлă ĕçсем тума сĕнес.

2013, юпа, 26.

## Чăваш наци конгресĕн чăваш халăхĕн этника хăйне евĕрлĕхне сыхласа хăварас енĕпе ĕçлемелли ПРОГРАММИ (тĕллевсем)

### 1. Социаллă пурнăçпа политикăра:

— Чăваш Республикин — федераци патшалăхĕн пайĕн, чăваш халăхĕн социаллă пурнăçпа политика тата этнокультура центрĕн — статусне упраса хăварасси тата аталантарасси.

— чăваш халăхĕн этника хăйсене евĕрлĕхне сыхласа упрама тата аталантарма, чăвашсен йăлана кĕнĕ тата професси культурине, чĕлхине, наци йĕркеленĕвне, пурлăхĕпе ăс-хакăл пуянлăхне пулăшу кÿме патшалăх-право никĕсне йĕркелемелли мерăсене хатĕрлесси;

— чăваш халăхĕн социаллă пурнăçпа экономика, этнокультура аталанăвĕн федераци тĕллевлĕ программиссене хатĕрлеме пуçару кăтартасси.

### 2. Социаллă пурнăçпа экономикăра:

— чăваш этника пĕрлĕхне чĕрĕлсе пыма идея тĕлĕшĕнчен хавхалантарасси, сывă пурнăç йĕркине сарасси, чăвашсен çемьепе ачалăхăн йăлана кĕнĕ хаклăхĕсене çĕнĕрен чĕртсе тăратмалли проектсене пурнăçласси;

— чăваш этника пĕрлĕхĕн çамрăк ăрăвăн пĕлÿ шайне, пĕлÿ пахалăхне ÿстерме пулăшасси, чăвашсене социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн инноваци ресурсĕсене алла илме хавхалантарасси;

— чăваш ялĕн – этника хăйне евĕрлĕхне çĕнĕрен чĕртсе тăратакан институтăн – социаллă пурнăçпа экономикине, социокультура аталанăвне, йăлана кĕнĕ культурипе чĕлхине упрама тата аталанма пулăшасси;

— Чăваш Республикипе Раççей Федерацийĕн регионĕсен хушшинче экономика çыхăнăвĕсене анлăлатас ĕçре Чăваш наци конгресĕн тата чăваш общество пĕрлешĕвĕсен пĕлтерĕшне вăйлатасси;

— Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн чăвашсем пурăнакан регионĕсен экономикăри пĕр-пĕриншĕн усăллă çыхăнăвĕсене çирĕплетме хутшăнасси;

— чăваш предпринимателĕсем социаллă пурнăçпа экономикăра çыхăну тытассине вăйлатасси, вĕсене ыр кăмăллăх тата спонсор ĕçĕ-хĕлĕ валли условисем туса парасси;

— Чăваш Республикинче тата чăвашсем йышлăн пурăнакан регионсенче чăваш этнокультури тĕпре тăракан этника туризмне аталантарма çул уçасси;

— чăваша халăх промыслисемпе ăслайĕсене, промысла пĕрлешĕвĕсене, прикладной ÿнер пултарулăхĕн мастерскойĕсене çĕнĕрен чĕртсе тăратма, аталантарма пулăшасси.

### 3. Ăслăлăхра:

— çамрăксен йышĕнчен чăваш гуманитари ăслăлăхĕсен пысăк квалификациллĕ кадрĕсене хатĕрлеме пулăшасси;

— чăвашсен историйĕпе культури çинчен хатĕрлекен ăслăлăх проекчĕсене укçа-тенкĕпе пулăшассине тивĕçтерме чăваш пайтаçисем хутшăннипе ăслăлăх гуманитари фондне йĕркелесси;

— чăвашлăхпа çыхăннă гуманитари ăслăлăхĕнче ĕçлекен наука кадрĕсен квалификацине пĕрмаях ÿстерме регионсен хушшинчи тата пĕтĕм тĕнчери çыхăнусене çул уçса парасси;

— чăваш ăсчахĕсем тĕнче ăслăлăхне хывнă еткере пропагандăласси;

— ăслăлăх мероприятийĕсем (конференцисем, семинарсем, çавра сĕтелсем) ирттерес, истори, культура, чĕлхе, фольклор, наци вĕренĕвĕ, чăваш халăхне воспитани парас енĕпе археологи, этнографи экспедицийĕсем, ăслăлăх тĕпчевĕсем йĕркелес ĕç-хĕле анлăлатасси;

— чăваш халăхĕн этника хăйсене евĕрлĕхне тишкерме пулăшакан этносоциологи тĕпчевĕсем ирттересси;

— чăваш халăхĕн этноистори палăкĕсене музей вырăнне хурса йышăнма, вĕсене реставрацилеме, юсама, культурăпа пĕлÿ туризмне йĕркеленĕ чухне çак палăксемпе усă курма пулăшасси;

— тĕнче опычĕпе усă курса этнокультура музейĕсен ĕçĕн çĕнĕ интерактив мелĕсене туса хатĕрлесси;

— тавра пĕлÿ тĕпчевĕсене анлăлатасси, чăваш ялĕсен историйĕ çинчен каласа кăтартакан кĕнекесене сарасси;

— чăваш халăхĕн пурлăхне, еткерĕпе ăс-хакăл культура пуянлăхне тишкересси, сыхласа упрасси тата сарасси;

— чăваш халăх историйĕпе, культурипе, чĕлхипе, фольклорĕпе çыхăннă ăслăлăх литературине хатĕрлеме, пичетлесе кăларма тата сарма пулăшасси;

### 4. Вĕрентÿ ĕçĕнче:

— Чăваш Республикинче тата РФ субъекчĕсенче тăван чĕлхене вĕренме тата сыхласа упрама, хутшăнмалли, воспитани памалли тата вĕренмелли чĕлхене суйласа илме, унпа усă курма чăваш халăхĕн прависене пăхăннин мониторингне йĕркелесси;

— Чăваш Республикинче тата Раççей Федерацийĕн регионĕсенче наци вĕренĕвĕн тытăмне сыхласа упрама тата аталантарма, чăвашла вĕрентекен вĕренÿ учрежденийĕсен сетьне анлăлатма, вĕсене халăх йăли-йĕркине тĕпе хурса воспитани памалли кăмăл-сипет нормисене чĕртсе тăратмашкăн хутшăнма пулăшасси;

— çемьен йăлана кĕнĕ хаклăхĕсене, чăваш этнопедагогикине сарма пулăшасси;

— чăвашсен пĕрлĕхлĕ конкурентлă наци вĕренÿ уçлăхне (унта шкулччĕнхи, шкул çулĕнчи, професси тата аслă шкул хыççăнхи вĕренÿ пулмалла) йĕркелеме хавхалантарсси;

— наци вĕренĕвĕнче инноваци технологийĕсене сарма май туса парасси;

— чăваш чĕлхине, литературине, историне, чăваш халăхĕн культурине çÿллĕ шайра вĕрентессине, наци вĕренĕвĕн тытăмĕн учрежденийĕсенчен вĕренсе тухакансен конкурентлăхне тивĕçтерме пулăшасси;

— федераци вĕренӳ органĕсем регион учебникĕсем, чĕлхепе, литературăпа, историпе, чăваш халăхĕн культурипе тĕрлĕ шайри вĕренӳ пособийĕсем кăларассине йĕркелеме пуçарулăх кăтартасси;

— Чăваш Республикин, çавăн пекех Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенчи аслă тата ятарлă вăтам пĕлӳ паракан заведенийĕсенче чăваш чĕлхипе тата культурипе профессионалсем вĕрентсе хатĕрлемелли тытăма çĕнетсе улăштарма хутшăнасси;

— Раççей Федерацийĕнче аслă вĕренӳ тытăмĕнче этнокультура чăваш компонентне пулăшасси;

— наци вĕренĕвĕн право никĕсне çĕнетсе улăштарма саккун кăлармалли пуçарусене хатĕрлесси;

— педагогăн — чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕн профессийĕн сумне ӳстермелли проектсене пурнăçласси;

— наци вĕренĕвĕн тытăмĕ тăрăх этноссен хушшинчи толерантлăха аталантарасси тата çирĕплетесси;

— уйрăмах пултаруллă ачасемпе çамрăксен валли вĕренӳ учрежденийĕсен сетьне йĕркелесси;

— ача пахчисенче, чи малтанах хуласемпе район центрĕсенче, чăвашла воспитани парасси;

**5. Этнокультурăра:**

— чăвашсен ăс-хакăл пуянлăхне анлăн сарасси, çак тĕллевпе ку чухнехи вĕренӳ тата коммуникаци технологийĕсемпе усă курасси;

— кулленхи ĕç хучĕсем хатĕрленĕ (делопроизводство) чухне, общество вырăнĕсенчи кăтартмăшсенче (вывески и указатели), халăха турттаракан транспортра чăваш чĕлхипе анлăн усă курасси;

— ку чухнехи чăваш ӳнер культурин аталанăвне пулăшасси;

— наци культура традицийĕсене хисеплеме вĕрентсе ӳстересси, чăваш халăх историйĕпе культура пуянлăхĕн хăйсене евĕрлĕхне упрасси тата аталантарасси;

— çамрăксен чăваш халăхĕн истори тата культура пуянлăхĕпе, йăлана кĕнĕ тата професси ӳнер культурипе ытларах кăсăкланма пуçлачăр тесе тăрăшасси;

— Чăваш Республикинче тата чăвашсем йышлăн пурăнакан регионсенче чăвашсен йăлана кĕнĕ тата професси культурине аталантарма пулăшакан этнокультура проекчĕсене пурнăçласси;

— Чăваш Республики Раççей Федерацийĕн регионĕсемпе тата чикĕ леш енчи çĕршывсемпе тытакан культура çыхăнăвĕсене йĕркелемешкĕн тата аталантармашкăн чăвашсене хутшăнма хавхалантарасси;

— чăвашсен культура пуянлăхне сыхласа упрас, ку чухнехи професси наци культурине аталантарас енĕпе ĕçлекен культура учрежденийĕсен специалисчĕсене хатĕрлеме, чăвашсен культура пуянлăхне халăх хушшинче саракансене, сыхласа упракансене пулăшасси;

— йăлана кĕнĕ тата професси культурине сыхласа упрама ачасемпе çамрăксен хушшинче ирттерекен конкурссене пулăшасси;

**6. Информаци сферинче:**

— чăваш халăхĕн культура хаклăхĕсене çĕнĕрен чĕртме тата трансляцилеме çĕнĕ технологисем ĕçе кĕртесси, этноссем пĕр-пĕринпе хутшăнма интерактив мелĕсене аталантарасси:

— чăваш культурине сарма мультимедиа хатĕрĕсене модернизацилесси;

— çӳллĕ шайри полиграфи тата тарăн содержаниллĕ стандартсемпе чăваш тата вырăс чĕлхисемлĕ Пĕтĕм Раççейри пичет кăларăмне туса хурасси;

— чăваш халăхĕн культура пуянлăхне сарас тата унăн хальхи аталанăвĕн çивĕч ыйтăвĕсене сӳтсе явас тĕлĕшпе тĕрлĕ йышши Интернет-проектсем йĕркелесси;

— республикăра сарăлакан компьютер программисенче чăвашла çăмăллăн усă курмалли майсем туса парасси, вĕсене чăвашлатас тĕлĕшпе ĕçлемешкĕн Windows, Android операци системисене чăваш раскладки хушас тĕлĕшпе производительсем умне сĕнӳсемпе тухасси, тĕрлĕ программăсен чăвашла интерфейсне хута ярасси;

— чăвашла программăсене анлăлатас тата аталантарас компьютерпа чăвашла çăмăллăн ĕçлеме майсем туса парас енĕпе ĕçлекен ятарлă ушкăн йĕркелесси;

**7. Этноссене пĕр чăмăра пĕрлештерес тата чикĕ леш енчи чăваш диаспорине интеграцилес тытăмра:**

— этника хăйне евĕрлĕхне сыхласа хăварас енĕпе Чăваш наци конгресĕ тата чăваш наци культура пĕрлешĕвĕсем пĕрле ĕçлессине тивĕçтересси;

— Чăваш Республикин патшалăх тата общество тытăмĕсем Раççей Федерацийĕн регионĕсенчи тата чикĕ леш енчи чăвашсен институцийĕсемпе çыхăну тытмалли мелсене çĕнетсе улăштарасси;

— чăвашсен этника ушкăнĕсене пĕр чăмăра пĕрлештермелли эффективлă майсем туса хатĕрлесси;

2013, юпа, 26.

## Чăваш Республикин Конституцине (Тĕп Саккунне) «патшалăх» сăмаха кĕртесси çинчен

Чăваш наци конгресĕн VIII Аслă пухăвĕ Чăваш Республикин Конституцийĕн (Тĕп Саккунĕн) 1 статйин 1-мĕш пунктне «патшалăх» сăмаха кĕртме ыйтать.

2013, юпа, 26.

### Чăваш керменĕ çинчен

Чăваш наци конгресĕпе Чăваш тавра пĕлӳçисен пĕрлĕхĕ çирĕм çул каялла Шупашкарти Чăваш этноцентрĕнче (Чăваш ялĕнче) Чăваш керменне (Халăхсен туслăх дворецне) лартма тытăнасси çинчен ыйту хускатнă, ăна тĕрлĕ шайра нумай хут сӳтсе явнă. («Тăван Атăл» журналăн 2002 çулхи 5-мĕш кăларăмне пăхăр).

Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ А.О. Ладыков 2012 çулхи пуш уйăхĕн 23-мĕшĕсенче Патшалăх Канашне янă 1454-мĕш çырура Чăваш керменне лартма виçĕ вырăнтан пĕрне суйласа илме сĕнет. «Университет-2» микрорайонта (заказчик-застройщик ЗАО «Тус»), «Грязевская стрелка» 1-А микрорайонта («Старко» фирма) тата Президент бульварĕнче (Чăваш патшалăх филармонийĕ патĕнче).

Çакăн хыççăн ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсемпе архив ĕçĕн министерстви пуçару ушкăнне çапла хурав панă: «Вопрос об открытии в г. Чебоксары Дома национальностей является актуальным, в связи с чем он находится под постоянным контролем Министерства. Строительство нового здания на эти цели в ближайшие годы не представляется возможным...»» (2013 çулхи нарăсăн 13-мĕшĕ, 0-4, 14-676.).

Çак лару-тăрăва шута илсе Чăваш наци конгресĕн VIII Аслă пухăвĕ çапла йышăнать:

**1.** Чăваш керменне чăваш наци культура автономийĕсемпе фирма-компанисене тата уйрăм усламçăсене пая кĕртсе пĕтĕм халăх мелечĕпе лартма тытăнас.

**2.** ЧНК Мăн Канашне строительство Попечителĕсен канашне йĕркелеме хушас.

2013, юпа, 26.

### Чăваш наци телекуравĕ çинчен

2011 çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕсенче Чăваш наци телекуравĕ ĕçлеме пуçларĕ. Ырă çак ĕçшĕн Чăваш Республикин Пуçлăхне М. В.Игнатьева, Чăваш Республикин Патшалăх Канашне тата Министрсен Кабинетне тав тумалла. Анчах унтанпа 2 çул иртрĕ пулин те патшалăх укçине питĕ нумай тăкса тунăскер халĕ те йĕркеллĕ ĕçлесе каяймасть.

Чăвашла кăларăмсем концепцире палăртнă пек 50% пулса пымаççĕ. Эфир сеткине тишкерсен куравсен темисем ансăрри, вĕсем йĕркеллĕ тухса пымании, урăх телеканалсенчен илнĕ фильмсем хуçаланни палăраççĕ. Вырăсла кăларăмсен шучĕ чăвашлисенчен темиçе хут нумайрах. Чăваш спектаклĕсемпе фильмĕсем питĕ сахал.

Çак тата ытти çитменлĕх йăлтах Чăваш наци телекуравĕ халĕ те «тулли» пуçлăхсăр пулнипе çыхăннă. Кăçалхи çу уйăхĕнче иртнĕ конкурсра комисси обществăра хăйсен ĕçĕсемпе палăрнă, телекурав ĕçне лайăх пĕлекен тăхăр кандидатран пĕри те Чăваш наци телерадиокомпани пуçлăхĕ пулма тивĕçлĕ мар тесе йышăнчĕ.

Малтанах телекурав тăвасси питĕ хакла кайса ларать тесе хăратакансем халĕ, ăна туса хунă хыççăн, чăваш халăхĕ кĕтнĕ телекурава аталантарса ярассишĕн тăрăшни сисĕнмест. Чăваш наци конгресĕн VIII Аслă пухăвĕ çак ыйтăва ЧР Пуçлăхĕнчен çитес вăхăтрах татса пама ыйтать.

2013, юпа, 26.

### Г.С. Лебедев ячĕллĕ наци интернат лицейĕ çинчен

1. Шупашкар хулинчи 2012 çулхи çĕртме уйăхĕнче хупăннă Г.С. Лебедев ячĕллĕ наци интернат лицейне сыхласа хăварма, ăна çĕнĕлле ĕçлеттерсе яма май туса памалла.

2. Чăваш ачисен шкулне «Пултаруллă ачасен Г.С. Лебедев ячĕллĕ чăваш наци интернат лицейĕ» ят памалла.

3. Лицей йĕркелӳçи ЧР Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерстви пулмалла.

4. Лицейра 200 ача валли вĕренӳ çурчĕ (шкул), укçа-тенкĕ шыраса тупма пулăшмалла.

5. Чăваш Республикин прокуратуринчен лицей çурчĕсемпе вăл вырнаçнă 3 гектар ытла лаптăка сутма хăтланакансене чарма тата киревсĕр çав ĕç мĕнле шайра пулнине тĕпчеме ыйтас.

2013, юпа, 26.

## РЕГИОНСЕН ХУШШИНЧИ «ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔ» ОБЩЕСТВО ОРГАНИЗАЦИЙĔН ПРЕЗИДИУМĔН ЙЫШĔ

**1. Н.Ф. Угаслов** — ЧНК президенчĕ — ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ; «ТУС» ЗАО генеральнăй директорĕ;

**2. В.Л. Клементьев** — ЧНК пĕрремĕш вице-президенчĕ; ЧНК ĕçтăвком председателĕ, предприниматель;

**3. П.В. Ивантаев** — ЧНК вице-президенчĕ; ЧР Агропромышленноç ветеранĕсен пĕрлĕхĕн çум председателĕ;

**4. А.П. Леонтьев** — ЧНК вице-президенчĕ; «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ —тĕп редакторĕ;

**5. О.В. Мешков** — ЧНК вице-президенчĕ; ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ;

**6. К.Г. Яковлев** – ЧНК вице-президенчĕ; Тутарстанри чăваш наци культура автономийĕн председателĕ;
**7. Ю.Е. Анисимова** – Шупашкар хулинчи А.Г. Николаев ячĕллĕ 10-мĕш шкулти чăваш чĕлхипе литературин вĕрентекенĕ;
**8. Э.К. Бахмисов –** тавра пĕлӳçĕ;
**9. З.И. Воронова** – ЧНК çумĕнчи халăх ăстисен ассоциацийĕн ертӳçи;
**10. Ю.А. Зорин** – Чăваш Енри стоматологсен ассоциацийĕн вице-президенчĕ; «Дент-а-мед» стоматологи центрĕн тĕп врачĕ; «Куславккасем» ентешлĕх председателĕ;
**11. В.П. Иванов** – Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн тĕп наука сотрудникĕ;
**12. С.Д. Казаков** – ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерствин пай пуçлăхĕ;
**13. А.П. Капитонов** – Чăваш Енри çĕр улми ӳстерекенсен ассоциацийĕн председателĕ; «ТАВ» компанисен ушкăнĕн çум хуçи; «Çĕр улмине мухтав» агрофирма» ООО директорсен канашĕн председателĕ; Чăваш Республикин ентешлĕхсен координаци канашĕн председателĕ;
**14. М.Н. Краснов;**
**15. Н.Е. Лукианов** – юрист;
**16. Ю.П. Михайлов** – Пушкăртстанри чăваш культура пĕрлĕхĕн председателĕ;
**17. С.А. Николаев** – Чăваш Республикин Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен Канашĕн ĕç тăвакан директорĕ;
**18. Е.К. Османова-Краснова** – юрăç; Хĕрлĕ Чутайсен «Чавал» ентешлĕх председателĕ;
**19. А.Н. Павлов** – адвокат; Чăваш Республикин Адвокатсен палатин канашĕн членĕ;
**20. А.А. Трофимов** – Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн тĕп наука сотрудникĕ;
**21. А.П. Хусанкай** – ЧНК хисеплĕ президенчĕ;
**22. Г.Н. Архипов** – ЧНК Президиумĕн хисеплĕ членĕ.

## ЧНК МĂН КАНАШĔН ЧЛЕНĔСЕМ

**1. С.В. Асамат** – поэт, композитор, юрăç,Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ преми лауреачĕ;
**2. Е.А. Андреева** – И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУ профессорĕ;
**3. С.В. Андреев** – чăваш çамрăкĕсен ЧНК çумĕнчи пĕрлĕхĕн ертӳçи;
**4. Ю.Е. Анисимова** – Шупашкар хулинчи А.Г. Николаев космонавт летчик ячĕллĕ 10-мĕш шкул вĕрентекенĕ;
**5. Г.Н. Архипов** – журналист;
**6. Э.К. Бахмисов** – тавра пĕлӳçĕ;
**7. В.А. Васильев** – И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ профессорĕ;
**8. В.П. Васильев** – Чăваш наци кĕрешӳвĕн ассоциацийĕн ертӳçи;
**9. Ф.Н. Волков** – Вăрнар поселокĕнчи «СОМ» завод генеральнăй директорĕ;
**10. З.И. Воронова** – халăх ăстисен ЧНК çумĕнчи ассоциацийĕн ертӳçи;
**11. А.Н. Вражкин** – «СВ-пресс» издательство директорĕ;
**12. Н.И. Димитриева** – хĕрарăмсен ЧНК çумĕнчи канашĕн ертӳçи;
**13. Н.И. Егоров** – И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ профессорĕ;
**14. Е.Е. Ерагин** – Муркаш районĕнчи мăчавăр;
**15. В.Г. Захаров** – çыравçă;
**16. В.П. Иванов** – Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ĕçченĕ; истори наукисен докторĕ;
**17. В.Н. Иванов** – «Акконд» ООО генеральнăй директорĕ;
**18. П.В. Ивантаев** – Чăваш Республикин Агропромышленноç ветеранĕсен пĕрлĕхĕн çум председателĕ; ЧНК вице-президенчĕ;
**19. А.П. Игнатьева** – Шупашкар хулинчи 12-мĕш шкул вĕрентекенĕ;
**20. С.Д. Казаков –** ЧР Культура министерствин пай пуçлăхĕ;
**21. М.И. Кириллов** – Çĕнĕ Шупашкар хулинчи пенсионер;
**22. З.А. Козлова** – «Уяв» тата «Юрай» ансамбльсен илемлĕх ертӳçи;
**23. В.Л. Клементьев** – ЧНК пĕрремĕш вице-президенчĕ;
**24. М.Н. Краснов** – этнограф;
**25. Л.В. Кузнецова** – И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУ профессорĕ;
**26. А.П. Леонтьев** – «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ;
**27. Н.Е. Лукианов** – юрист;
**28. Н.Ф. Малышкин** – Елчĕк район администрацийĕн пай пуçлăхĕ;
**29. И.П. Меньшикова** – Чăваш наци музейĕн директорĕ;
**30. О.В. Мешков** – ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ;
**31. Г.Л. Никифоров** – Чăваш наци интернат лицейĕн вĕрентекенĕ;
**32. С.А. Николаев** – ЧР Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен Канашĕн ĕç тăвакан директорĕ;
**33. Е.В. Николаева** – Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ çамрăксен театрĕн директорĕ;
**34. В.Н. Оринов** – «Орион» студи ертӳçи;
**35. А.Н. Павлов** – юрист;
**36. Т.Н. Петрова** – Çĕрпӳ районĕнчи Сăнав станцийĕнчи вăтам шкул вĕрентекенĕ;
**37. Н.П. Петрова** – Муркаш район администрацийĕн пай пуçлăхĕ;
**38. С.В. Петрова** – ЧР вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕн çумĕ;
**39. С.В. Печникова** – Халăх пултарулăх çурчĕн методисчĕ;
**40. К.П. Портнов** – журналист;
**41. М.М. Пчелкин** – предприниматель;
**42. В.Г. Родионов** – И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ профессорĕ;
**43. Р.В. Сарпи** – поэт; Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ; Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ çамрăксен, Пĕтĕм тĕнчери тĕрĕк халăхĕсен поэзийĕн Нежип Фазыл ячĕллĕ премийĕсен лауреачĕ;
**44. В.В. Сапожников** – Шупашкарти Н.В. Никольский ячĕллĕ педагогика колледжĕн директорĕ;
**45. В.П. Станьял** – тавра пĕлӳçĕ;
**46. В.А. Тимофеев** – «Каратэ» федерацин президенчĕ;
**47. А.А. Трофимов** – Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ĕçченĕ, искусствоведени докторĕ;
**48. А.Н. Тукмаков** – А.Г. Николаев космонавт летчикăн Асăну комплексĕн директорĕ;
**49. В.Г. Тяпкин** – «Сăвар» фонд ертӳçи;
**50. Н.Ф. Угаслов** – «ТУС» ОАО генеральнăй директорĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ;
**51. И.В. Удалова** – Кӳкеç поселокĕнчи Бичурин музейĕн директорĕ;
**52. В.А. Федотов** – И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ профессорĕ;
**53. Л.И. Филиппова** – «Республика» хаçат редакторĕ;
**54. В.В. Христофоров** – Чăваш халăх артисчĕ, «Янра, юрă!» ансамблĕн илемлĕх ертӳçи;
**55. А.П. Хусанкай** – ăсчах, ЧНК хисеплĕ президенчĕ;
**56. О.М. Цыпленков** – Чăваш çамрăкĕсен «Сăвар» пĕрлĕхĕн ертӳçи;
**57. И.Н. Ядуркин** – И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенчĕсен, аспиранчĕсен тата ординаторĕсен пуçламăш профсоюз организацийĕн председателĕ;
**58. О.Н. Викторов** – Елчĕксен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**59. В.Е. Егоров** – Çĕрпӳсен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**60. Ю.А. Зорин** – Куславккасен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**61. В.А. Иванов** – Элĕксен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**62. А.В. Иванов** – Тăвайсен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**63. А.П. Капитонов** – Комсомольскисен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**64. А.И. Кибеч** – Канашсен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**65. А.Г. Кузнецов** – Сĕнтĕрвăррисен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**66. В.Н. Нягин** – Вăрмарсен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**67. Е.К. Османова** – Хĕрлĕ Чутайсен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**68. В.М. Семенов** – Патăрьелсен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**69. Н.Н. Смирнов** – Шупашкарсен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**70. А.И. Ухтияров** – Шăмăршăсен ентешлĕхĕн ертӳçи;
**71. Г.А. Абакшина** – Пермь крайĕнчи чăвашсен «Юрату» наци культура автономийĕн ертӳçи;
**72. Г.А. Александров** – Беларуç Республикинчи чăвашсен «Атăл» общество пĕрлĕхĕн ертӳçи;
**73. А.А. Архипкин** – Пенза облаçĕ;
**74. А.И. Архипов** – Тюмень облаçĕнчи чăвашсен «Тăван» общество организацийĕн ертӳçи;
**75. С.В. Большова** – Мари Республики;
**76. С.И. Васильев** – Саратов облаçĕнчи чăвашсен «Ентеш» наци культура автономийĕн ертӳçи;
**77. А.И. Волков** – Мускав хулинчи чăваш культура пĕрлĕхĕн ертӳçи;
**78. А.П. Глухов** – Тольятти хулинчи чăвашсен «Шанчăк» наци культура автономийĕн ертӳçи;
**79. А.М. Григорьев** – Раççейри чăваш федераци наци культура автономийĕн ертӳçи;
**80. Л.Г. Григорьева** – Эстонири Нарва хулинчи чăваш культурин «Нарспи» общество ертӳçи;
**81. Н.В. Давыдов** – Самар облаçĕнчи чăваш наци культура пĕрлĕхĕсен координаци канашĕн ертӳçи;
**82. А.П. Ефимов** – Чул хулари «Чăваш культура центрĕ» регион общество организацийĕн ертӳçи;
**83. А.Н. Ефремов** – Тюмень облаçĕнчи Муравленко хулинчи чăваш наци культура автономийĕн ертӳçи;
**84. В.М. Живов** – Питĕр хулинчи чăваш наци культура автономийĕн ертӳçи;
**85. А.Л. Иголкин** – Удмурт Республикинчи «Чăваш наци центрĕ» общество организацийĕн ертӳçи;

**86. Н.И. Лисовая** – Киев хулинчи чăваш культура пĕрлĕхĕн ертӳçи;
**87. Ю.П. Михайлов** – Пушкăрт Республикинчи чăваш культура пĕрлĕхĕн ертӳçи;
**88. Я.Я. Мульдияров** – Томск облаçĕнчи чăваш культура пĕрлĕхĕн ертӳçи;
**89. О.Н. Мустаев** – Чĕмпĕр облаçĕнчи «Еткер» фонд ертӳçи;
**90. О.В. Немцева** – «Питĕрти чăвашсен пĕрлĕхĕ» регион общество организацийĕн ертӳçи;
**91. Д.М. Николаев** – Свердловск облаçĕнчи чăваш наци культура пĕрлĕхĕн ертӳçи;
**92. Е.П. Попова** – Челябинск облаçĕ;
**93. В.И. Портнов** – Тутар Республики;
**94. А.К. Самаренкин** – Тутар Республики;
**95. В.И. Сваев** – Чĕмпĕр облаçĕнчи чăваш наци культура автономийĕн ертӳçи;
**96. П.И. Семенов** – Эрĕнпур облаçĕнчи чăваш наци культура автономийĕн ертӳçи;
**97. В.А. Сидоров** – Пушкăрт Республикинчи чăвашсен «Канаш» пĕрлĕхĕн ĕçтăвкомĕн ертӳçи;
**98. Е.Г. Степанов** – Хабаровск крайĕ;
**99. В.А. Тимофеев** – Тутар Республики;
**100. В.В. Тимофеева** – Иркутск облаçĕ;
**101. Г.И. Храмов** – Красноярск крайĕнчи чăваш наци культура автономийĕн ертӳçи;
**102. К.Г. Яковлев** – Тутар Республикинчи чăваш наци культура автономийĕн ертӳçи;

*«Чăваш тĕнчи», 2013, 17–18..*

## ĂÇТАЛЛА УТАТПĂР?

Пирĕн пурнăçра массăллă информаци хатĕрĕсен пĕлтерĕшĕ ӳссе пырать. Уйрăмах телерадио пĕлтерĕшĕ пысăк. Паян Интернет та çамрăксен, ӳссе пыракан ăру ăнлавĕсене, тавра курăмĕсене никĕслет, вĕсене пысăк витĕм кӳрет. Чăваш халăхĕн, чăваш çамрăкĕсен ку тĕлĕшпе, шел те, хăйсене май шăпа. Эпир чиксансем, эрменсем, чечексем мар. Хамăра тĕрĕк халăхĕсен ушкăнне кĕртетпĕр пулин те – унăн халăхĕсен чĕлхисене ăнлансах каймастпăр. Тăван аттеанне чĕлхине манса пыратпăр. Йышăнар çакна, çак пулăма хак пама пултарар, вăй-хал çитерер. Шупашкарта пурăнакан хăш эрмен е чечен çемйинче ачи-пăчи тăван чĕлхепе калаçмасть? Тупма пултаратпăр-и ун пеккине? çук. Тепĕр енчен, Чăваш халăхĕн хăш артисчĕн е чăваш чĕлхипе, культурипе çыхăнса ĕçлекен, шалу илсе тăракан çыннăн çемйинче тăван, çав тери çемçе, сăпайлă, илемлĕ чăваш чĕлхи хуçаланать? Çукпа пĕрех вĕсем. Шупашкарĕпе шутласан та икĕ алă пӳрнисем ытлашши пулĕç. Ытти çынсем пирки вара мĕн каламалли пур. Кашниех хăйĕн тĕпренчĕкĕн пуласлăхĕ, ăнăçулăхĕ вырăс е акăлчан чĕлхине вĕренсе ӳссен çеç çутă пулать тесе шухăшлать. Чăваш чĕлхи вара Шăхасантан иртсен кирлĕ те мар текен шухăш нумай чăваш пуçĕнче çирĕпленсе ларнă. Чăваш чĕлхине араб паллисемпе усă курса янăратма пултарнă, тĕнчипе суту-илӳ туса Атăл тăрăхĕнче кăна вун-вун хула çĕклесе цивилизаци тилхепине тытнă Пăлхар, Сăвар чăвашĕсем паян чăвашла уççăн калаçма вăтанаççĕ. Чăваш çырулăхĕ йĕркеленнине, тĕпрен илсен, И.Я. Яковлевпа çеç çыхăнтарса, ӳссе пыракан ăрăва хамăрăн пуян та хăватлă, тĕнчене кисретме пултарнă Аттил çинчен те, чапа тухнă чăваш патшисем çинчен те илтмен çамрăксен. Хăйĕн аваллăхĕпе палăрнă чăваш чĕлхи тĕнчери нумай чĕлхе аталанăвне витĕм кӳнĕ. Хăватлă та аслă вырăс халăхĕ паян кун та чăвашсен çĕр-çĕр сăмахĕпе хăйĕн чĕлхинче усă курать.

Ăçталла утатпăр эпир? Камран килет çак çитменлĕх? Республика Элтеперĕ те, министрĕсем те хамăрăн мар-и? Мĕншĕн эпир хамăрăн пуян та мăнаçлă историе пĕлместпĕр, чĕвĕл-чĕвĕл тăван чĕлхене ӳссе пыракан ăрăва парнелеместпĕр? Мĕншĕн эпир тăван халăх, асаттесен умĕнчи тивĕçе, парăма туйса пурăнмастпăр. Тăван чĕлхене таçта шăтăка чиксе хуратпăр, çакăн çинчен уççăн калаçма хăратпăр. Айри пуканпа мул çеç тăрса юлсан ăçта çитĕпĕр эпир капла? ЮНЕСКО пире, чăвашсене, пĕтекен халăхсен шутне кĕртет. Икĕ çырав хушшинче кăна халăх шучĕ 200 пин ытла чакнă. Тутарсем Пăлхар хулинчен чăваш историне пăрса мăсăльмансен центрне туса хучĕç. Эпир вара çывăратпăр. Мĕн тума пулать? Ытлах шала кĕрсе кайиччен хамăр несĕлсем умĕнчи тивĕçе пурнăçласа ним хăрамасăр, урăх нимех те тăвайманнине шута илсе, республика ятне улăштарма вăхăт çитмерĕ-ши? «Пăлхар–Чăваш Республики» темелле мар-ши?

Наци телекуравĕнче чăвашла калаçма кадрсем çитмен пирки сăмахларăмăр Культура министерствин пĕр ларăвĕнче. Ăçтан пулччăр вĕсем. Чăваш патшалăх университечĕнче чăваш факультетне кăçал 16 çамрăка çеç вĕренме илнĕ. Кун пекки пĕр республикăра та çук. Ректор шухăшĕпе – çакăн сăлтавĕ факультет ĕçченĕсем абитуриентсемпе япăх ĕçленинче. Вăл та пур пуль, йышăнмалла. Анчах та тĕпчев çакна кăтартса пачĕ: университетра кăна мар, педуниверситетра та профессортан пуçласа ялти вĕрентекен таранах пĕр шухăша палăртрĕç – «чирлĕ» эпир, халăхăн пуласлăхĕ хăрушлăхра, абитуриентсем çукпа пĕрех. Тепĕр сăлтавĕ – ЕГЭ. Факультета вĕренме кĕрес текенсем вырăс чĕлхипе экзамен тытассинчен хăранипе заявлени памаççĕ. Кирлĕши çак экзамен чăваш факультетне вĕренме кĕрекенсене? Хамăр çамрăклăха аса илетĕп. Ун чухне университетра ятарлă факультет та пулман, историпе филологи факультетĕнче – чăваш чĕлхипе литературин уйрăмĕ. 1977 çулта унта пире 50 çамрăка вĕренме илчĕç. Пĕр вырăна тăватă çынччĕ. Камсем вĕсем халĕ – пирĕн вăхăтра чăваш уйрăмĕнче вĕреннисем? Нумайăшне халăхăмăр пĕлет. Борис Чиндыков, Геннадий Максимов, Геннадий Атрашкин писательсем, Алексей Леонтьев, Леонид Ильин, Ладимир Вадимов, Александр Вражкин, Владимир Сарилов, Анатолий Абрамов, Геннадий Федотов журналистсем, Валентин Абрамов доцент, Владимр Рыбкин поэт, педагогика наукисен кандидачĕ Константин Портнов, Геннадий Дегтярев чĕлхеçĕкуçаруçă, Олег Печников, Галина Абрамова, Виталий Михайлов, Зинаида Михайлова – шкулта чăвашла вĕренмелли кĕнекесен авторĕсем, Валерий Комиссаров – çав кĕнекесене кăлараканĕ. Вĕсемшĕн эпĕ савăнатăп. Анчах малашлăх, паянхи лару-тăру мана канăç памасть.

Паллах, кирлĕ кадрсене хатĕрлес ĕçре республика нимĕн те тумасть тесшĕн мар эпĕ. Культура институтне уçни кăна мĕне тăрать. Вăл вăхăтра ЧР Патшалăх Канашĕн культура комитечĕн ертӳçи пулнă май хам та хутшăннă ку ĕçе. Анчах мĕнле усă куратпăр çав тупрапа? Чăваш культурине, чăвашлăха аталантармалли тĕп центр пулса тăнă-ши вăл? Вĕрентекенсем, студентсем камсем? «Чăваш чунĕ çук унта, ахаль ретри вĕрентӳ заведенийĕ çеç пулса тăчĕ вăл, çухатрăмăр ятарлă института», – терĕç мана чăваш культуришĕн ĕмĕрне панă, халĕ унта ĕçлекен хăшпĕр специалистсем. Студентсен хушшинче те чăвашла пĕлекеннисем сахалланса пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе институт тĕллевлĕн ĕçлемест, унăн ертӳçисене вăл кирлĕ те мар пулĕ. Ĕç укçи пултăр, пуçлăхсем умĕнче йăпăл-йăпăл туни те çитет. «Чунсăр япала усăсăр», – тенĕ ваттисем.

Ку тĕлĕшпе пĕтĕмлетсе çакна калама пулать. Республика Элтеперĕ те, Патшалăх Канашĕ те халăх укçине культура валли уйăрмаççĕ мар. Паллах, сахалтарах. Акă, çамрăксен театрне тăвас ыйтăва 20 çул ытла çĕклетпĕр. Хĕрлĕ тӳремри «Чăваш амăшĕ» палăкпа Мускав кĕперĕ хушшинчи сĕвекре хăпарса лармаллаччĕ вăл. Ăна тума çĕр те уйăрнăччĕ пĕр вăхăтра. Халĕ ун вырăнне тĕлли-паллисĕр тума пуçланă «Сăвар» хăна çурчĕ куçа «савăнтарать». (Сăвапла вырăна туртса илнĕшĕн чăваш Турри çапларах хак пачĕ пулмалла çак пулăма.) Унтанпа намăс вырăнсене кăтарти-кăтартми, купарчасене пăркаласа ташламалли çав тери чаплă, тĕлĕнмелле хăватлă керменсем пĕрре кăна мар çĕкленчĕç Шупашкарта. Çав вăхăтрах пĕр çĕнĕ театр та пулмарĕ. Çамрăксен театрĕн паянхи вырăсла репертуарне пăхсан – кирлĕ те мар-и? Чăваш халăхĕ ячĕпе йĕркеленĕ, 67 процент тарăн чăваш халăхĕ тĕпленнĕ республикăра пурăнатпăр мар-и эпир? Раççейре ун пеккисем чечексем кăна.

Чăваш чĕлхине аталантарнăшăн, ача сачĕсенче, шкулсенче ăна кирлĕ тарăн вĕрентнĕшĕн, пĕр танлăх принципĕсене тытса пырса, культу-

ра учрежденийĕсенче чăваш культурине те хисепре тытнишĕн, наци лицейĕнче мĕн ачаранах чăн чăваш культуришĕн çунса тăракан, хăйсен пĕлĕвне малалла чăваш факультечĕсемпе культура институчĕсенче ÿстерме пултаракан ачасене хатĕрленĕшĕн кам айăплама пултарĕ пире? Сăлтавĕ хамăрта мар-и? Кам чарать пире кадрсен политикине тытса пыма, хуласен урамĕсене чăваш сăн-сăпачĕпе илемлетме, чăвашсен тĕп уявне Акатуйне республика шайĕнче пĕтĕм тĕнчери чăвашсене чĕнсе, пĕрлештерсе, хамăрăн авалхи илемлĕхпе ирттерме? Пĕтĕм ĕç тĕллевĕсене, ытти халăх интересĕсене манмасăр, халăхăмăрăн пуласлăхĕпе çыхăнтарсан, çак политикăна тытса пырсан лару-тăру пĕтĕмпех ырă енне улшăнма пултарать. Республика ертÿçисен çакна манас марччĕ. Халăхпа пĕрле пулсан кăна, наци интересĕсене шута илсен çеç «хура халăх» тĕрекне, вăйне туйма, халăх асĕнче юлма пулать. Шаймиев, Рахимов, Илюмжинов, Николаев пек. Паян вĕсем Мускавран тивĕçлипе пулăшу илсе тăраççĕ. Çеçпĕл Мишши те, тăван чĕлхене маннăшĕн, унăн шăпишĕн хуйхăрса чире кайса вилнĕскер, 20-мĕш çулсенче чунĕн ыратăвне çапларах палăртать:

*Пĕлтер мана, тăван çĕр-шывăм!*
*Хăçан кăтартăн халăхна*
*Хăв чĕлхÿне хăват кĕртмешкĕн*
*Тĕнчене килнĕ Ывăлна?*

«Мĕн акатăн, çав шăтать», – тенĕ ваттисем. Эстрада юрăçисене япăх юрăсемшĕн вăрçатпăр, анчах та вĕсене вĕрентекенсем пур-и пирĕн? Çук! Театр критикĕ пĕрре те пулин пур-и пирĕн халăхăн? Каллех çук! Чăваш композиторĕсем кирлĕ пире. Ăçта вĕсем?

Татса паман çавăн йышши вун-вун ыйтăва пăхса тухмасăр, пĕтĕмлетÿ тумасăр малалла каяс çук эпир. Енчен те ку пире кирлĕ мар тăк пĕтер эппин, пĕтĕмпех вырăсланар. Анчах çакна манар мар: чăваш чĕлхи пулмасан Чăваш Республики те пулмĕ. Урăхла шухăшлатăр пулсан çанă тавăрса, тĕллевсем палăртса витĕмлĕн ĕçлер, ун çинчен халăхăмăра уçăмлăн пĕлтерер. «Качакан хÿри пур, япалан йĕрки пур», – тенĕ чăвашсем. Йĕрки питех те кирлĕ çак ĕçре. Сывлăш пекех кирлĕ!

Геннадий АРХИПОВ,
ЧНК президенчĕ.
*«Чăваш тĕнчи», 2013, 17–18№.*

## ÇĔНĔ ШĂПĂР ÇĔНĔЛЛЕ ШĂЛТĂР

*Кăçалхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕ Чăваш наци конгресĕн историне çĕнĕ страница çырнипе кĕрсе юласси иккĕлентермест. Çак кун К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн залĕнче ĕçленĕ ЧНК VIII Аслă пухăвĕн 400 яхăн делегачĕпе хăни хушшинче пулма тÿр килнине телейлĕ шăпа вырăнне хурса йышăнтăм.*

Съездăн аслă трибуни çинчен сăмах илсе калаçнă çынсен пĕтĕмлетÿллĕ шухăшĕ çапла, Чăваш наци конгресĕ чăваш халăхĕн хăйсене евĕрлĕхне, йăли-йĕркине, культурине малалла аталантарас енĕпе ырă, пархатарлă ĕç сахал мар тунă; чăваш этника пĕрлĕхĕн çирĕплĕхĕпе пĕлтерĕшне ÿстерес çĕрте те унăн тивĕçлĕ тÿпи пур. Пытармăпăр, хальлĕхе вăл Чăваш Республикин патшалăх тата вырăнти органĕсемпе тытакан çыхăну тивĕçлĕ шайрах мар-ха. Ÿлĕмрен çак çитменлĕхрен те хăтăлас шанăç пур, мĕншĕн тесен кун пирки Аслă пуху йышăнăвĕн малтанхи йĕркисенчех уçăмлăн палăртнă.

ЧНКн VIII Аслă пухăвĕ ĕçлĕ лару-тăрура иртрĕ пулсассăн та хушса каламаллисем пур. Эпĕ ЧНК Президиумĕ VII съезд хыççăн туса ирттернĕ ĕçсем пирки тĕплĕ шайлав (отчет) пуласса кĕтнĕччĕ. Анчах кун йĕркинчи тĕп ыйтупа тухса калаçакан никам та пулмарĕ. Сывлăхĕ хавшанă Геннадий Архипов президент вырăнне вице-президентсенчен пĕрин те пулсан делегатсене унпа паллаштармаллахчĕ ĕнтĕ. Кĕтнĕ пек пулмарĕ, Наци конгресĕ отчетлă тапхăрта нимĕн те туман, унăн президенчĕ вара яваплăха туйса ĕçлемен пек пулса тухрĕ. Аслă пухăва ертсе пыма шаннă Петр Ивантаев та делегатсене ытларах малашне мĕнлерех ĕçлемелли çинчен ас тутарса-асăрхаттарса тăчĕ. ЧНК вице-президенчĕ Николай Угаслов çавна тĕпе хурса Чăваш наци конгресĕн чăваш халăхĕн этника хăйсене евĕрлĕхне сыхласа хăварас енепе ĕçлемелли программине уçса пачĕ. Тĕпрен илсен – программа-тĕллев социаллă пурнăçпа политикăра, экономикăра, ăслăлăхра, вĕрентÿ çĕнче, этнокультурăра, информаци тытамĕнче, этноссене пĕр чăмăра пĕрлештерес тата чикĕ леш енчи чăваш дисапорине интеграцилес тытăмра пурнăçа кĕртмелли ĕçсем çинче никĕсленет. Çав ĕçсене вара съезд суйланă Президиумăн çĕнĕ йышĕн тĕллевлĕ ĕçпе çирĕплетсе пымалла.

Малтан каланине тепĕр хут çирĕплетме тивнĕшĕн каçартăрах вулаканăм, ЧНК VII съезд хыççăн мĕн тунине, мĕн туса çитерейменнине пĕлеймесĕрех юлтăмăр-иç! Сăмах илнĕ Геннадий Архипова куншăн нимĕн чухлĕ те айăпламăпăр, вăл шанса панă вырăнта хăй пултарнă тарăн пĕтĕмпех пурнăçлама тăрăшнă. Наци конгресĕн «тĕп хуçин» ĕçне республика тулашĕнчи чăвашсен делегацийĕсем пайăррăн ăшă сăмахпа асăнса тухни кăмăлăма çĕклерĕ, çав хушăрах тăван республикăри хула-районтан суйланнă делегатсенчен çавна илтме май килмерĕ. Мĕншĕн çапла килсе тухнин сăлтавне, тем тесессĕн те, ăнлантарса параймастăп. Тен, ЧНК диаспорăпа çыхăннă ыйтусене маларах хунă, тулай чăвашĕсемпе çыхăну ытларах тытнă?

Пысăк театрăн çутă залĕнче пĕр-пĕрне улăштаракан ораторсене итлесе ларнă чухне çакăн пек шухăш та иленчĕ: «Мĕншĕн эпир, чăвашсем, пысăк лава нумай çул туртнă çынна чун-чĕререн тухакан сăмахпа тав тума та манатпăр тепĕр чухне?»

Халĕ Наци конгресĕн çĕнĕ ертÿçĕ. Делегатсем çак тивĕçе пурнăçлама шаннă Николай Угаслов малтанхи кунсенчех çĕнĕлле вăй-халпа, Президиумăн, ĕçтăвкомăн членĕсемпе килĕшÿлĕх те ăнланулăх тупса ĕçлессе, Аслă пуху йышăнăвĕсене «манăçа» хăвармасăрах пурнăçа кĕртессе шанатпăр. «Тилхепене тытма пĕлмелле», – теме юратать Анатолий Кибеч çыравçă. Тутар çĕрĕ çинче çуралса ят илнĕ Николай Федорович хăй ăста, пултаруллă строитель пулнипе пĕрлех Чăваш халăх çуртне алăк уçса кĕрекенсен йышĕн хастар та пуçаруллă ертÿçи пулнине кăтартса паратех-тĕр.

*Çут шанăç унăн кăмăлне çĕклетĕр,*
*Чăвашлăхшăн вăл тăтăр чунĕпе.*
*Малтан та малалла хастар тĕллетĕр*
*Уттарнă майăн пурнăç çулĕпе.*
*Тутар чăвашĕ Николай Угаслов*
*Ыр ĕç тăвинччĕ тетпĕр ытларах.*
*Пĕлетĕр-и, çак хушамат «пуласлăх»*
*Сăмахпала састашланать ара.*

Геннадий КУЗНЕЦОВ,

ЧНК VIII Аслă пухăвĕн делегачĕ.
*«Хыпар», 8.11.2013, 215№.*

## ТĂВАН ЧĔЛХЕШĔН ТУНСĂХЛАСА

*Раççейри чăваш наци культура пĕрлешĕвĕсен ертÿçисем – Оренбург, Чулхула тата Свердловск облаçĕсенчен, Мускав тата Шупашкар хулисенчен – Хусанта пухăнса калаçрĕç.*

Тĕл пулăва Чăваш наци конгресĕн пĕрремĕш вице-президенчĕ **Валерий Клементьев, Алексей Леонтьев тата Константин Яковлев** вице-президентсем хутшăнчĕç.

Пухăннисем хальхи вăхăтра çивĕч тăракан ыйтусене сÿтсе яврĕç. Вĕсенчен пĕри –чăвашсем йышлă пурăнакан регионсене чăвашла шкул кĕнекисемпе тата илемлĕ литературăпа тивĕçтересси. Тутарстанри, Оренбургпа Свердловск облаçĕсенчи чăвашсем тăван чĕлхепе пичетленĕ çĕнĕ кĕнексем вуласшăн, анчах та юлашки çулсенче çакăн пек савăнăç час-часах пулмасть.

Чăваш наци конгресĕн Мăн Канаш ларăвĕнче çак ыйтăва пăхса тухма шантарчĕç.

Хӑнасем «Чӑваш пики» конкурса курса савӑнчӗҫ. Тутар Республикинче пурӑнакан чи илемлӗ, чи маттур, чи сатур та чи пултаруллӑ чӑваш пикине суйларӗҫ. Ҫак ята Алексеевски районӗнче пурӑнакан Мила Ильдуганова тивӗҫрӗ.

ЧНК пресс-служби. *9.12.2013.*

## ВАТТИСЕМ КАНАШЛАРӖҪ

*Чӑваш наци конгресӗ ҫумӗнчи Ваттисен тӗп канашӗн президиумӗ (ертӳҫи – Виталий Станьял халӑх академикӗ) ӗнер ирттернӗ ларура 4 ыйтӑва пӑхса тухрӗ.*

Малтан «Чӑваш тӗнчи» хаҫатра пичетленнӗ «Халӑх хуралӗ, Ваттисен канашӗ тата ял мухтарӗсем ҫинчен» тӑрӑмпа (положенипе) паллашрӗҫ, унтан Ваттисен Канашӗн президиумне ҫӗнӗ пайташсене кӗртме палӑртрӗҫ, 2014 ҫул валли ӗҫ планне йышӑнчӗҫ, ҫавӑн пекех чӑваш ялӗсенчи паллӑ вырӑнсене, йӑла-йӗркене упрассине тӗплӗн сӳтсе яврӗҫ. Юлашки ыйтупа ЧНК Президиумӗн пайташӗ Эдуард Бахмисов, Федор Карягин ӑсчах тӗрлӗ сӗнӳ пачӗҫ.

Май пур тарӑн тӑтӑшрах пухӑнса канашлама Ваттисен тӗп канашӗн президиумне ҫывӑхра – Шупашкар, Ҫӗнӗ Шупашкар хулисенче, Лапсар, Кӳкеҫ поселокӗсенче, Муркаш районӗнче – пурӑнакансене суйларӗҫ, республикӑри ытти ял-хулари тата тулашри ваттисен канашӗсемпе, ял мухтарӗсемпе (старостисемпе) ҫыхӑнӑва вӑйлатма йышӑнчӗҫ.

ЧНК пресс-служби.
*27.12.2013.*

## НАЦИ ТЕЛЕРАДИОКОМПАНИЙӖ КОНГРЕСС ӖҪНЕ ҪУТАТӖ

*Чӑваш наци конгресӗн президенчӗ Николай Угаслов Чӑваш наци телерадиокомпанийӗн тин ҫеҫ суйланнӑ ҫӗнӗ пуҫлӑхӗпе Александр Магаринпа тӗл пулса ӑна конкурс витӗр тухса ҫӗнтернӗ ятпа саламланӑ, малашнехи ӗҫре ӑнӑҫу суннӑ. Ертӳҫӗсем Наци конгресӗпе Наци телерадиокомпанийӗ пӗр-пӗринпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлемеллине палӑртнӑ, телекуравпа та, радиопа та Конгресс ӗҫ-хӗлне тӑтӑшах ҫутатса тӑмалли ҫинчен калаҫса татӑлнӑ.*

Наци телерадиокомпанине икӗ радио тата пӗр телеканал кӗреҫҫӗ: «Наци радиовӗ», «Тӑван радио», «Наци телекуравӗ». Компани ҫулталӑка яхӑн яваплӑ пуҫлӑхсӑр ӗҫлерӗ. Халӗ вара Чӑваш Республикин информаци политикипе массӑллӑ коммуникацисен министерстви иккӗмӗш хут конкурс ирттерсе ыйтӑва татса пачӗ, Чӑваш Республикин Наци телерадиокомпанине ертсе пыма Наци библиотекин «Кӗнеке палати» пайӗн пуҫлӑхне Александр Магарина суйларӗҫ. Конкурс комиссине хальхинче общество организацийӗсен представителӗсене те кӗртрӗҫ, вӗсен шутӗнче Чӑваш Республикин Общество палати, «Халӑх фрончӗ» общество юхӑмӗ тата Чӑваш наци конгресӗ. Конгресс ячӗпе унӑн пӗрремӗш вице-президенчӗ, ӗҫ тӑвакан комитечӗн ертӳҫи Валерий Клементьев сасӑланӑ.

ЧНК пресс-служби.
*17.01.2014.*

## ПӖРЛЕШӲРЕ ПӖР-ПӖРНЕ ӐНЛАННИ КИРЛӖ

*Кӑрлачӑн 29-мӗшӗсенче Ӗпхӳри Халӑхсен туслӑхӗн ҫуртӗнче Чӑваш наци конгресӗн вице-президенчӗсемпе Пушкӑртстанри чӑваш хастарӗсен «ҫавра сӗтелӗ» иртрӗ.*

Ӗҫлӗ канашлӑва Пушкӑрт Республикинчи «Канаш» ӗҫтӑвком ертӳҫи **Валерий Сидоров** уҫрӗ. Вӑл республикӑри чӑвашлӑх юхӑмӗн аталанӑвӗ ҫинче чарӑнса тӑчӗ, тунӑ ӗҫсемпе, малашлӑх планӗсемпе паллаштарчӗ. ЧНК пӗрремӗш вице-президенчӗ **Валерий Клементьев** пухӑннисем патне Конгресс президенчӗн Николай Угасловӑн салам сӑмахне илсе ҫитерчӗ, Чӑваш Республикин ялавне парнелерӗ.

– Пушкӑртстана килнин тӗп тӗллевӗ – кунти чӑвашсен пурнӑҫӗпе, вӗсен кӑмӑл-туйӑмӗпе паллашасси, малашнехи хутшӑнусене йӗркелесси, – терӗ Валерий Клементьев. – ЧНК тытӑмӗнче чылай улшӑну пулса иртрӗ. Конгресс пӗтӗм Раҫҫейри чӑвашсене пӗрлештерекен организаци пулнине шута илсе регионсемпе ӗҫлессине пысӑк тимлӗх уйӑрасшӑн. Умри тӗллевсене пурнӑҫлама пире ЧНК Президиумне регионсенчи чӑваш хастарӗсене кӗртни те пулӑшса пырӗ. Унсӑр пуҫне кашни регионта ЧНК представителӗ пулмалла. Ӑна сирӗн пӗрле пухӑнса татса памалла пулӗ тетӗп. Ҫак лава кам туртма пултарнине эсир ҫеҫ калама пултаратӑр.

Ҫавӑн пекех вӑл ЧНК ҫуртне пӗтӗмӗшле (малтан унӑн пӗрремӗш хутӗнче ҫеҫ вырнаҫнӑччӗ) Конгресс аллине панине пӗлтерчӗ. Малашне унта юлашки съездра суйланӑ 12 комитета ӗҫлеме те вырӑн ҫителӗклӗ пулӗ. Паянхи кун Конгресс Уставне ҫӗнетес енӗпе пысӑк ӗҫ пырать. Ятарлӑ комисси ӗҫлет. Июнӗн 23-мӗшӗсенче Шупашкарта ЧНК черетсӗр Аслӑ пухӑвӗ иртмелле. Унта ҫӗнетнӗ Устава йышӑнмалла.

Конгресӑн регионсемпе ӗҫлекен вице-президенчӗ **Константин Яковлев** Хусанта пурӑнать, Тутартстанри чӑвашсен культура автономине 13-мӗш ҫул ертсе пырать. Хӑй те тулай чӑваш пулнӑ май регионсенчи чӑвашсен нушисене лайӑх ӑнланать, ҫывӑха илет.

– Конгресс Чӑваш Республикине мар, пире, тӗнчери чӑвашсене, пӗр чӑмӑра пухӑнма кирлӗ. Ҫавӑнпа та пирӗн яланах пӗрле пулмалла. Вырӑнсенче те ҫакнах сӗнесшӗн. Пӗрлӗхре ҫеҫ вӑй. Вун пилӗк ҫул каялла Тутарстанра пирӗн 20 яхӑн хӑй тӗллӗн ӗҫлекен чӑваш пӗрлӗхӗччӗ. Ун чухне республика Президенчӗ пире курмастчӗ те, илтместчӗ те. Мӗншӗн тесен кашни чӑваш хӑй патша пулнӑ май хӑйсене евӗр хуҫаланатчӗ, пӗри ҫӑхав ҫырать, тепри хӑйӗн интересӗсене ҫеҫ хӳтӗлет... Вун виҫӗ ҫул каялла Хусанта пухӑнса культура автономине йӗркелерӗмӗр те – ӗҫ чылай кал-кал кайрӗ. Сире те ҫав ҫулпах утма сӗнетӗп, – чӗнсе каларӗ вӑл.

Малалла Яковлев Тутарстанри чӑваш культура автономийӗн ӗҫ-хӗлӗ ҫинче чарӑнса тӑчӗ. 2013 ҫулта Тутарстанри чӑвашсем тӗрлӗ мероприяти ирттерме пӗтӗмӗшле 1,4 миллион тенкӗ нухрат тӑкакланнӑ иккен. Ҫак укҫан пӗр пайне хӑйсем ӗҫлесе илнӗ, теприне патшалӑх пулӑшнипе пухнӑ. «Чиперук» ачасен конкурсне йӗркелеме Тутарстан культура министерствин грантне (300 пин тенкӗ ытла) илнӗ...

Чӑваш ҫыравҫисем те ҫывӑрмаҫҫӗ Габдулла Тукай ҫӗр-шывӗнче. Вӗсен хӑйсен писательсен организацийӗ пур. Ӑна ҫулталӑк каялла йӗркеленӗ. Вӑл республикӑри чӑваш автономийӗ ҫумӗнче шутланса тӑрать. Вӑхӑтвӑхӑтӑн пӗрлӗх вӑйӗпе «Шурӑмпуҫ» литература журналӗ тухса тӑрать.

Тутарстанри чӑваш шкулӗсен паянхи тата малашнехи кун-ҫулӗ пирки те сӑмах нумай пулчӗ. Оптимизаци витӗмӗпе чылайӑшӗ Раҫҫейӗн ытти регионӗсенчи пекех хупӑнаҫҫӗ. Ҫапах та автономи ҫине тӑнипе ҫак процеса хӑш-пӗр ҫӗрте чарма май пур. Хупнӑ шкулсене каялла уҫнӑ тӗслӗхсем ҫинче те чарӑнса тӑчӗ Константин Геннадиевич. 20–30 ачаллӑ шкулсем вӑтам е тулли мар шкул статусне ҫухатманнине пӗлтерчӗ.

«Ҫавра сӗтелре» Конгресӑн Пушкӑртстанри представителӗ пирки хӗрӳ калаҫу пулса иртрӗ. Тӗрлӗ сӗнӳ пулчӗ, ҫапах та ку ыйтӑва пухӑннисем «Канашӑн» 3-мӗш съездӗнче татса пама йышӑнчӗҫ.

Юрий МИХАЙЛОВ.
Ӗпхӳ хули.
*4.02.2014.*

## ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИПЕ СЕВАСТОПОЛЬ ХУЛИ ТУСЛӐХА ҪИРӖПЛЕТӖҪ

*Нумаях пулмасть Чӑваш наци конгресӗн президенчӗ Николай Угаслов Севастополь хулинчи (Крым, Украина) чӑваш наци культура обществин ертӳҫин ҫумӗпе Владимир Мочаловпа тӗл пулчӗ. Калаҫура Конгреспа Севастополь чӑвашӗсен туслӑ ҫыхӑнӑвне ҫирӗплетессi ҫинчен калаҫрӗҫ, пӗрле тумалли ӗҫсене палӑртрӗҫ.*

«Севастополь хулинчи чӑваш наци культура обществи – Чӑваш наци конгресӗн пӗр пайӗ», – терӗ Владимир Мочалов. – Общество хастарӗсем Конгресӑн комитечӗсемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлесшӗн».

Кӑҫал Севастополь Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫи пынӑ вӑхӑтра хулана

нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнăранпа 70 çул çитнине паллă тăвать.

Çакна халалласа Раççей Тинĕс-çар флочĕн мухтавĕ пулса тăнă хулана хӳтĕлесе пуçĕсене хунă ентешсене асăнса палăк лартасси пирки каларĕ Украинăран килнĕ хăна. Николай Угаслов сумлă ĕçе Чăваш наци конгресĕ те хутшăнасса шантарчĕ.

Тепĕр ыйтупа та – Севастополь хула администрацийĕпе Чăваш Республикин Правительстви суту-илӳ, экономика, наукăпа техника тата культура ыйтăвĕсемпе пĕрле ĕçлесси çинчен ятарлă килĕшӳ тăвасси пирки – пĕрле ĕçлеме калаçса татăлчĕç.

ЧНК пресс-служби.
*11.02.2014.*

## ЮТ ÇЫН – ХИР УРЛĂ, ТĂВАНУ – ВУТ УРЛĂ

Чăваш наци Конгресĕ – чăвашлăха упрама, аталантарма, чăваш халăхĕн интересĕсене хӳтĕлеме йĕркеленĕ организаци. Хальхи вăхăтра чăвашсен çуррине яхăн пайĕ тăван республика тулашĕнче пурăнать. Вĕсем хăйсем чăваш пулнине манмаççĕ, наци культура пĕрлĕхĕсем йĕркелеççĕ, пĕрпĕринпе хутшăннисĕр пуçне Чăваш Енпе те çыхăну тытаççĕ. Конгресс тулай чăвашсене çак тĕлĕшпе пур енлĕн пулăшма тăрăшать.

ЧНК Президиумĕн черетлĕ ларăвĕнче Санкт-Петербург хулинче Чăваш наци культура автономийĕ валли культурăпа ĕç центрĕн çуртне тăвас ыйтăва пăхса тухрĕç. Конгресс президенчĕ **Николай Угаслов** Питĕрти чăвашсен ертӳçине **Владимир Живова** асăннă центра тума инвесторсем шырама, вĕсемпе тĕл пулу йĕркелеме сĕнчĕ.

Çавăн пекех Конгресс Президиумĕн пайташĕсем Севастополь хулинчи (Крым, Украина) чăваш наци культура обществипе малашне тачă çыхăнса ĕçлемелли çинчен калаçрĕç, Раççей тулашĕнче пурăнакан чăвашсене те манмалла маррине палăртрĕç.

ЧНК пресс-служби.
*17.02.2014.*

## НУМАЙ ЫЙТУ УÇĂМЛАНАТЬ

*Ĕнер Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн черетлĕ ларăвĕ иртрĕ. Кун йĕркине чылай ыйту кĕртнĕ. Вăл шутра чи пысăкки комитетсен ĕç-хĕлне пăхса тухасси пулчĕ. Çавăн пекех Конгресс медалĕн эскизне тăвас тĕлĕшпе ирттернĕ конкурса та пĕтĕмлетрĕç.*

Йĕркелӳ тата право комитечĕ хальхи вăхăтра Конгресăн çĕнĕ уставне хатĕрлессипе ĕçлет. Ăна сӳтсе явнă хыççăн утă уйăхне палăртнă Аслă пухура йышăнмалла. Экономикăпа предпринимательлĕх комитечĕ Наци конгресĕн Попечительсен канашĕпе Фондне туса хурас ĕçе пурнăçлать. Культура комитечĕ те пушă лармасть. «Ахах-мерчен аваллăхĕ» ятпа чăваш тумĕн уявĕсене ирттерет, «Кĕмĕл сасă» конкурс-фестивале хатĕрленет. «Сывă наци» комитет ертӳçи Юрий Зорин тухтăр республикăри наркологи диспансерĕн ĕçченĕсемпе пĕрле ялтан яла çӳресе сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарассишĕн вăйне хурать. «Чăваш ялне» ертсе пыракан Эдуард Бахмисов уявсем юрă-ташăшăн кăна мар, çут çанталăка упрассишĕн те пулмалла тесе тăрăшать. «Чăваш хĕрарăмĕ» пур комитетпа та хутшăнса ĕçленин пайти ытларах пулмалла тет, çавăнпа комитетсем пĕрле ĕçлессине вăйлатма чĕнсе калать. Тĕрĕсех, хĕрарăм пур çĕрте йĕрки те пур, усси те куçăмлăрах.

Комитетсен ĕç-хĕлне туса пынă май нумай ыйту уçăмланать, çав вăхăтрах çĕннисем те çураласçĕ. Ватăсене хисеплес, çамрăксене вĕрентес йăла çут çанталăк саккунĕсемпе пĕр шайра пулин те паянхи кун хăйĕн витĕмлĕхне чакарса пырать. Тăван чĕлхене пĕлменни çитĕнекен ăрăва тăван халăхран, унăн историйĕпе культуринчен пистересси хăратать. Шкул коридорĕсенчи стендсенче чăвашла çырни курăнманпа пĕрех пулни пăшăрхантарать. Çак тата ытти нумай ыйтупа республикăн вĕрентӳ тата культура министрĕсемпе пĕрле ларса шухăшламаллине палăртрĕç Президиум пайташĕсем.

Конгресс Президиумĕ «Чăваш халăхĕшĕн тунă тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» медаль эскизне конкурса хутшăннă Юрий Ювенальевпа Сергей Ювенальев (ашшĕпе ывăлĕ) ӳнерçĕсем лайăх ăсталанă тесе палăртрĕ. Медале кĕмĕлтен тума йышăнчĕç.

ЧНК пресс-служби.
*27.03.2014 .*

## ТĂВАН ХАЛĂХ УМĔНЧИ ТИВĔÇ

*Николай Федорович Угаслов. Çак çын пирки питĕ нумай, унăн тĕрлĕ енлĕ ĕçĕсене шута илсен, вĕçĕ-хĕррисĕр калаçма пулать. Вăл – «ТУС» строительство компанийĕн генеральнăй директорĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Чаваш наци конгресĕн президенчĕ, Тутарстан чăвашĕсен «Пăлхар»общество пĕрлешĕвĕн ертӳçи...*

Ĕçне кура – мухтавĕ. Николай Федорович – ЧР тава тивĕçлĕ строителĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Тутарстан Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ăслăлăх хисеплĕ докторĕ, Тутарстан Республикин Çĕпрел районĕнчи Хулаçырми ялĕн хисеплĕ гражданинĕ. Кам вăл пирĕншĕн Николай Угаслов? Кулленхи пурнăçăн кирек хăш тытăмĕнче те ун пирки тивĕçлĕ хурав илме пулĕ. Паян эпир унпа хăйĕнпе калаçăпăр. Сăмахăмăр Чăваш наци конгресĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки пулĕ. Иртнĕ çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕсенче ăна ЧНК президентне суйланă. Ун умĕн тăватă çул Николай Федорович ЧНК вице-президенчĕ пулнăччĕ.

**– Николай Федорович, сире ЧНК президенчĕн «тилхепипе» шанса панăранпа пилĕк уйăх çеç иртрĕ, çапах та пурнăçланă ĕçсем сахал мар. Эсир хăвăр хăшĕн пирки тĕплĕнрех чарăнса тăнă пулăттăр?**

– Чи малтанах çак саманта палăртса хăвармалла. Унччен тем вăхăт хушши ЧНК çуртне Конгреса парасси пирки калаçнă, анчах усси пулмарĕ. Халĕ ыйтăва татса пама пултартăмăр. Çакă – пĕрремĕш пысăк çитĕнӳ, çĕнтерӳ. Иккĕмĕшĕ – ЧНК тытăмне çĕнетни. Комитетсем йĕркелесе ятăмăр. Халĕ вĕсем 12. Кашни пурнăçăн вăл е ку сферипе çыхăннă. Вĕсем хăйсен планĕпе ĕçлеççĕ.

**– ЧНКн хăйĕн саккунлă çурчĕ пур терĕмĕр. Тĕрĕссипе, ăна та йĕркене кĕртмелле. Мĕн тума палăртнă?**

– Юсав ĕçĕсене пуçăннă ĕнтĕ, анчах пур ыйту та укçа çине «тăрăнать». Историпе культура палăкĕ шутланакан çурта тул енчен тирпей-илем кĕртме патшалăх пулăшать, шалтисене хамăр вăйпа пурнăçлăпăр. Паллах, ĕç питĕ нумай, çавăнпа хальхи вăхăтра васкаварлă, питĕ пĕлтерĕшлине çеç тума пултаратпăр. Вăй илсе пынă май пӳлĕмсене тĕпрен юсама, конструкцисене, никĕсе çĕнетме тĕллев тытнă. Ун чухне ятарлă специалистсене явăçтарăпăр.

Республика кунне палла тунă вăхăтра ЧНКн черетсĕр Аслă пухăвне ирттерме палăртнă, «косметика» юсавне çав вăхăта вĕçлемелле.

**– Эсир Чăваш наци конгресĕн ӳçĕнче çĕнĕ çын мар. «Тилхепене» алла илсен ăна хăш енне ытларах «туртма» пуçларăр? Мĕншĕн?**

– Халĕ «тилхепене» сылтăмалла та, сулахаялла та туртмастпăр, малалла каятпар. Мĕн лайăххи пулнă, ăна çĕнетсе пыратпăр.

**– Киввинчен хăшĕ юрăхлă, хăшĕн никĕсĕ çирĕп тетĕр?**

– Лайăххи – ЧНК халăхпа пĕрле пулни, республика тулашĕнчи йăхташăмăрсемпе туслă пурăнни. Çакна малалла тăсса, çĕнетсе, вăйлатса пырăпăр.

Çивĕч ыйту сахал мар. Вĕсем: çитĕнекен ăрăва тăван чĕлхене вĕрентесси, хамăрăн историе тĕпчесси, чăваш культурине аталантарасси, ытти халăхпа туслă пурăнса пĕрлехи проектсем хатĕрлесси, ача-пăчана физкультурăпа кăсăклантарасси, хамăрăн сумлă çынсене чысласси, вĕсем пирки ыттисене пĕлтересси, çамрăк ăрăва çак ырă тĕслĕхсене тĕпе хурса çитĕнтересси.

**– Николай Федорович, чăвашлăх аталанăвĕнче сирĕн тӳпе вышкайсăр пысăк: 2008 çулта Кăнна Кушкинче тăван халăхăн çутта кăларуçин Иван Яковлевăн палăкне лартрăр, ун умĕн темиçе çул маларах Тутарстанри Аксу район центрĕнче – Чăваш халăх поэчĕн Николай Поло-**

**руссов-Шелепин палăкне, тăван ялăрта – чиркÿ, ун хыççăн Çĕпрелте – СССР авиаци промышленноçĕн министрĕ пулнă, икĕ хутчен Социализм ĕç Паттăрĕ ятне илне Петр Дементьевăн палăкне. Çак ĕçсене тума мĕн хистенĕ сире?**

– Пирĕн, Тутарстан чăвашĕсен, ентешлĕхĕ темиçе çул килĕштерсе ĕçлет. Маттур çыннăмăрсемпе – Алексей Трофимов академикпа, Порфирий Афанасьев поэтпа, Владимир Нагорнов скульпторпа (амăшĕ пирĕн ялтан) тата ыттисемпе – тивĕçлипе мухтанатпăр.

Тепĕр чухне вĕсем мана пĕрле илсе çÿреççĕ. Çапла майпа «Чуваши Татарстана» кĕнеке кун çути курчĕ. Тăван республика çыннисен ĕмĕтшухăшĕ канăçсăрлантарни вĕсене пулăшма хистет те. Акă, сăмахран, Аксусем Чăваш халăх поэчĕн ятне пĕрремĕш тивĕçнĕ çынна унăн 100 çулхи юбилейĕнчех палăк лартса ятне вилĕмсĕрлетес тесе ĕмĕтленнĕ. Шел те, ăна пурнăçа кĕртме тата чĕрĕк ĕмĕр кирлĕ пулчĕ.

Кăнна Кушкинчи тĕл пулу та асрах-ха. Ялта шкул та, Иван Яковлевăн музейĕ те пур. «Вĕсен варринче патриархăн палăкĕ тăрсан мĕнле аван пулмалла та», – терĕç ял çыннисем. Пĕрлехи вăйпа пуçăнар эппин терĕм эпĕ те.

Мĕн асăрхарăм: çак ĕçсем хыççăн Тутарстанри йăхташсен пуçарулăхĕ чылай ÿсрĕ, шкул ачисем те лайăхрах вĕренме пуçланине пĕлтерчĕç.

**– Хальхи вăхăтра ЧНК умĕнче мĕнле тĕллевсем?**

– Малтанхи документсене йĕркене кĕртсе ĕçлеттерсе ярасси. Юрист ĕçĕ нумай, Устав, положенисем хатĕрлемелле. Документсене çуллахи съездра çирĕплетсен умри ĕç-пуç йĕркеленсе каясса шанатăп.

**– Юлашки вăхăтра ЧНК филиалĕсем районсенче те чăмăртанма пуçларĕç мар-и?**

– Вĕсем Чаваш Енри районсенче çеç мар, Тутарстанри чăваш районĕсенче те пур. Хамăр ĕçсене вĕсен урлă пурнăçласа пыратпăр. Тĕллевсем уçăмлă: ачасене тăван чĕлхене юратма вĕрентесси, хамăрăн йăласене упрасси, культурăна çĕклесси, авалхи уявсене çĕнĕ вăй парасси, таварасси.

Халăхăн сывлăхĕ те шухăшлаттарать пире. Чăваш ялĕсенче лайăх мар йăла – эрех-сăрапа айкашасси – тымар ярать. Унпа кĕрешес тĕллевпе районсене тухтăрсен ушкăнĕсем тухса лекцисем ирттереççĕ. Ку енĕпе Куславкка ентешлĕхĕн ертÿçине Юрий Зорина палăртса хăварнă пулăттăм. Пирĕн хастарсем район, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе çыхăнса ĕçлеççĕ.

**– Çак кунсенче ЧНК фончĕ çумĕнче Попечительсен канашĕ чăмăртанчĕ. Ун йышĕнче – сумлă йăхташсем, ĕçлĕ çынсем. «Çавра сĕтел» хушшине пуçтарăннăскерсем умри тĕллевсене тăван чĕлхепе калаçса уçăмлатни те кăмăла çĕклерĕ. Попечительсен канашĕн тĕллевне мĕнре куратăр?**

– Чăваш наци Конгресĕ – общество организацийĕ. Патшалăх май килнĕ тарăн пулăшсан та, тĕрлĕ проект хатĕрлесе грантсем çĕнсе илсен те – палăртнă ĕçсене пурнăçлама нухрат çитсе пымĕ. Çак тĕллевпе йĕркелерĕмĕр те ăна. Ниме – чăвашсен чи лайăх, шанчăклă юхăмĕ. Пĕрлехи вăйпа тем те тума пулать. Ĕç вара пирĕн нумай. Хапха умне çитсе тăнисем те, малашлăхрисем те. Республика кунĕнче Пĕтĕм чăвашсен иккĕмĕш Акатуйне ирттересшĕн. Каçал вăл тата сумлăрах вырăнта – тĕп хулари Хĕрлĕ тÿремре – иртĕ. Тĕнче тăрăх саланса пĕтнĕ йăхташсене çеç мар, Республика кунне паллă тума ытти хутлăхран килекен хăнасене те тыткăнлама пултартăр вăл.

Манăçа тухса пыракан йăла-йĕркене ÿкерсе, çырса юлма ĕлкĕрмелле, май килнĕ тарăн вĕсене çĕнĕ пурнăç памалла. Выраăна тухса экспедицисем ирттермелле, вĕсем тăрăх литература пичетлемелле тата ытти те. Попечительсен ĕçне тăван халăх умĕнчи тивĕçпе хакланă пулăттăм.

**– Чăваш наци конгресĕн ĕçĕ-хĕлĕ вăй илсе пыни куç умĕнчех. Çакă хăшне-пĕрне тарăхтарать те-мĕн. Пĕр блогер шухăшĕпе – Чăваш Ен иккĕмĕш Украина пулса тăрас хăрушлăх та пур иккен…**

– Ăслă çын сăмахĕ мар ку. Пире бандеровщинăпа арпаштарма кирлĕ мар. Пирĕн тĕллев – пуринпе те туслă пурăнасси. Çак кунсенче çеç-ха Чăваш патшалăх культурăпа искусство институтĕнче тĕрлĕ халăх хушшинчи «Новруз» уяв иртрĕ. Пĕр кĕрекере Чăваш Енре тымар янă туркменсем, таджиксем, азербайджансем, узбексем тĕл пулчĕç. Вĕсене саламлама ытти халăх çыннисем те хутшăнчĕç. Эпир те, чăвашсем, хамăран уявсенче Чаваш Енĕн пысăк çемйинчи туссене курма ялан хавас.

Надежда СМИРНОВА калаçнă.
*«Хыпару», 5.04.2014, 61–62№.*

## ЗАСЕДАНИЕ ПОПЕЧИТЕЛЬСКОГО СОВЕТА КОНГРЕССА

*14 апреля в г. Чебоксары в Чувашском национальном музее состоялось очередное заседание Попечительского совета Чувашского национального конгресса. В его состав входят члены Чувашского национального конгресса, руководители и представители организаций, общественные деятели, деятели науки и культуры, выразившие поддержку целям и задачам Конгресса.*

Открывая заседание, Президент Чувашского национального конгресса **Николай Угаслов** отметил, что Попечительский совет создается с целью содействия эффективному функционированию и совершенствованию деятельности Конгресса, повышению его роли в общественно - политической жизни.

Согласно повестке дня был рассмотрен проект Положения о Попечительском совете Чувашского национального конгресса. По итогам его рассмотрения и с учетом всех высказанных замечаний, предложений было принято решение о создании из числа членов Попечительского совета рабочей комиссии по доработке представленного проекта Положения.

Также по представлению председателя Попечительского совета Чувашского национального конгресса **Юрия Зорина** был избран его заместитель. Им стал директор рекламно-производственной компании «Информ-медиа» **Эдуард Максимов**. Также был избран Президиум Попечительского совета..

Пресс-служба ЧНК.
*15.04.2014.*

## ПРЕЗИДЕНТ ЧУВАШСКОГО НАЦИОНАЛЬНОГО КОНГРЕССА НИКОЛАЙ УГАСЛОВ НА РОДИНЕ КЛАССИКОВ ЧУВАШСКОЙ ПОЭЗИИ

*22 мая 2014 года Президент Чувашского национального конгресса, депутат Государственного Совета Чувашской Республики **Николай Угаслов** и вице-президент Чувашского национального конгресса, председатель Чувашской национально-культурной автономии в Республике Татарстан **Константин Яковлев** посетили родину двух знаменитых чувашских поэтов – Константина Васильевича Иванова и Якова Гавриловича Ухсая – с. Слакбаш Белебеевского района Республики Башкортостан.*

Село Слакбаш – это цветущий край, край поющих родников, поэтический край. Здесь с берегов небольшой речки Слак выбиваются родники с необыкновенной вкусной водой.

Руководителей Чувашского национального конгресса встретил глава Слакбашевского сельского поселения Олег Беляев. На родине автора «Нарспи» уже более 70 лет действует мемориальный музей. «Какая короткая жизнь, и какие великие творения оставлены нам», – отметил Николай Угаслов, ознакомившись в ходе экскурсии с жизнью и творчеством классика чувашской литературы.

Константин Иванов за недолгую жизнь успел так много сделать – создать поэму «Нарспи» и другие произведения. Природа щедро

одарила его талантом: гениальный поэт, переводчик, педагог, художник, фотограф... Автор прекрасных стихотворений, стихотворных сказок, трагедии. Но более всего Константин Иванов знаменит своей гениальной поэмой «Нарспи», ставшей энциклопедией чувашской жизни и переведенной на многие языки народов мира: болгарский, венгерский, французский, азербайджанский, якутский, татарский, башкирский и т.д.

После экскурсии Николай Угаслов и Константин Яковлев направились на могилу поэта, а затем к памятнику Константина Иванова. Посетили родник, где встретились когда-то Сетнер и Нарспи, испили чистой родниковой воды. Затем гости поднялись на Гусли-гору – место, которое вдохновляло поэтов-классиков Константина Иванова и Якова Ухсая на творчество. Здесь, на открытом склоне, 7 июля в 1986 году нашел свое последнее пристанище Яков Ухсай.

Николай Угаслов и Константин Яковлев отметили, что всегда мечтали приехать в Слакбаш. «Сегодня давнишняя мечта осуществилась. Я ощутил, каким воздухом дышал Константин Иванов. Я доволен и счастлив, не зарастает тропа, ведущая в Слакбаш», – поделился своим впечатлениями президент Чувашского национального конгресса.

Пресс-служба ЧНК.
*28.05.2014.*

## 2014, ҫӗртме, 23: IX (черетсӗр) Аслӑ пуху



IX (черетсӗр) Аслӑ пуху делегачӗсемпе хӑнисем. 2014, ҫӗртме, 23.

## ЧНК: УСТАВ ÇĔНЕЛЧĔ, ĔÇ-ХĔЛ КАРТИ АСЛĂЛАНЧĔ

*Республика кунне уявлама тĕрлĕ регионтан йăхташсем килсе çитрĕç. Çак пулăмпа усă курса* ***Чăваш наци конгресĕ Мăн Канаш ларăвне ирттерчĕ.*** *Тĕпрен илсен унăн кун йĕркинче регионсен хушшинчи общество асăннă организацийĕн Уставне сÿтсе явас ыйту пулчĕ.*

Ларăва ЧНК президенчĕ **Николай Угаслов** уçрĕ. Малтанах ĕç органĕсене – президиума, секретариата, редакци тата шутлав комиссийĕсене – çирĕплетрĕç.

– Чăваш наци конгресĕн VIII Аслă пухăвĕнче организаци Уставне çĕнетмелли çинчен ыйту хускатнăччĕ. Унти хăш-пĕр пункт паянхи саккунсемпе килĕшсе тăманни паллăччĕ. Ку ĕçе вăраха тăсмалла маррине ăнланатпăр: саккунпа килĕшсе тăман документлă пĕрлешĕвĕн шăпи иккĕленÿллĕ. Кĕске хушăра ЧНК Президиумĕпе ятарлă комисси Уставăн çĕнĕ редакцине хатĕрлерĕç. Ку енĕпе комисси членĕсене Николай Лукианова тата Александр Павлова уйрăммăн тав тăватăп, – терĕ Конгресс ертÿçи Николай Угаслов.

Проекта сÿтсе явма тытăниччен Устава хатĕрлекенсене сăмах пачĕç.

– 2013 çулхи юпа уйăхĕнче иртнĕ Аслă пуху хыççăн пуçăнтăмăр пысăк ĕçе. Малтанхи Уставăн кăшкарĕ çеç тăрса юлчĕ темелле: сĕнÿсене шута илсе (тиркекен те, мухтакан та чылай пулни Конгресс ĕç-хĕлĕ çынсемшĕн ик айкки те тăвайкки евĕр пулманнине çирĕплетрĕ) нумай юсарăмăр-хушрăмăр. Документ проектне халăх патне пичетпе электрон мелĕпе çитертĕмĕр, – Устава çĕнетесси пĕр-икĕ кунри ĕç маррине çирĕплетрĕç **Николай Лукиановăн** сăмахĕсем.

Мăн Канаш ларăвне килсе çитнĕ йăхташсенчен чылайăшĕ, шел, сÿтсе явмалли проекта пухăва пырсан тин алла тытрĕ. Кашни пайпа, пунктпа тĕплĕн паллашаймарĕ те-и? Апла пулин те залра ларакансен хушшинче сĕнÿ паракан чылай пулчĕ. Акă, калăпăр, Уставăн тĕп тĕллевĕсене палăртакан 2-мĕш пайăн 2.1 пунктĕнче çапла палăртни пур: «... нацисен хушшинчи çураçăва тивĕçтерес, Раççей Федерацине демократи, цивилизаци тата федераци патшалăхĕн шайĕнче упраса аталантарас ĕç-хĕл».

– Чăваш Республикине упраса хăварасси çинчен те каласа хăвармаллах кунта, – сĕнчĕ **Константин Яковлев**.

Пĕтĕмĕшле положенисем, Конгресс тытăмĕ, ăна йĕркелесси çинчен калакан пайсенче те Уставăн çирĕплетнĕ вариантĕнче хушăмсем, уçăмлатнисем пулĕç ахăртнех. Мăн Канаш ларăвĕнче Чăваш наци конгресĕн çĕнĕ йышне çирĕплетес ыйтупа та хĕрÿ калаçрĕç. Ĕç-хĕле тухăçлăрах йĕркелес тĕллевпе Президиум йышне Чăваш Республикин ертÿлĕхĕнчи çынсене те – вĕренÿ министрне Владимир Иванова, культура министрне Вадим Ефимова, информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрне Валентина Андрееванă, экономика аталанăвĕн министрне Владимир Аврелькина – кĕртме йышăнчĕç. Вĕсем регионсен хушшинчи общество организацийĕн ĕç-хĕлне витĕм кÿрес пирки хашĕ-пĕри иккĕленчĕ пулин те Конгресс хускатнă çивĕч ыйтусене пурнăçа кĕртме чиновниксем те хастар хутшăнасса шанаççĕ ЧНК активисчĕсем.

***

**Каç кÿлĕм Чăваш наци конгресĕн IX (черетсĕр) Аслă пухăвĕ ĕçлерĕ. Унта ЧР культура тата вĕренÿ министрĕсем Вадим Ефимовпа Владимир Иванов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, чăвашлăхшăн çунакан хастарсем хутшăнчĕç.**

Съездра сÿтсе явмашкăн тăратнă тĕп ыйтусенчен пĕри – Мăн Канашра пăхса тухнă Устав проектне йышăнасси. Ăна улăштарни пурнăç ылмашăнса пынипе çыхăннă. Конгресăн саманапа тан утмалла. Унсăр пуçне РФ политика тата право тытăмĕ питĕ хăвăрт улшăнса çĕнелет. Конгресс çĕр-шыв тата республика саккунĕсемпе килĕшÿллĕн, тĕнче правине шута илсе ĕçлесе пырать. Чăваш халăхĕ хăй те улшăнчĕ. Ытти халăх пекех вăл тĕрлĕ енлĕ аталану çул-йĕрĕ шырать.

Делегатсен нумай шухăшне, сĕнĕвне тĕпе хурса Чăваш наци конгресĕн çĕнетнĕ Уставне пĕр саслă пулса йышăнчĕç.

И. ИВАНОВА, А. ИЗМАН.
*«Хыпар», 23.06.2014, 120–121№.*

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН ПРЕЗИДЕНЧĔ Н.Ф. УГАСЛОВ ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН IX (ЧЕРЕТСĔР) АСЛĂ ПУХĂВĔНЧЕ КАЛАНĂ СĂМАХ (2014 ÇУЛХИ ÇĔРТМЕ УЙĂХĔН 23-МĔШĔ)

Хаклă йăхташсем!

Ĕç-хĕле пĕтĕмлетесси – Чăваш наци конгресĕн çирĕпленнĕ йăли. Чăваш наци конгресĕн съезчĕ тăххăрмĕш хут иртет ĕнтĕ. Палăртни вырăнлă: паян, пирĕн çак тĕл пулу умĕн, Конгресăн Аслă Канашĕн ларăвĕ иртрĕ.

Чăваш наци конгресĕн VIII съезчĕ пулнăранпа сакăр уйăх çитрĕ. Çак тапхăрти лару-тăрăва тишкернĕ май Аслă пуху татăклă тĕллевсем, çивĕч ыйтусене татса памалли çулсене палăртнипе асра юлни çинчен калас килет. Чăваш наци культура автономийĕсем тата та çине тăрарах, хастартарах ĕçлеме пикенчĕç. Çакă Тутарстан, Пушкăртстан республикисенче, Чĕмпĕр, Самар, Тюмень, Чул хула, Сарă ту облаçĕсенче, Красноярск крайĕнче лайăх палăрать.

Халĕ вара сакăр уйăхра пурнăçланă ĕçпе паллаштарма ирĕк парсамăр. Паян çирĕппĕнех калама пултаратпăр: пирĕн ĕç-хĕл Чăваш Енĕн калкал аталанăвĕпе пĕр килет. Çак çитĕнÿсем çÿлтен ÿкмеççĕ, вĕсем – Чăваш наци конгресĕн тата тĕнче тăрăх саланнă чăваш халăхĕн пĕрлехи тăрăшулăхĕпе ĕçĕн кăтартăвĕ.

Чăваш наци конгресĕн VIII съезчĕн йышăнăвĕсене пурнăçласа Конгресс Уставĕн проекчĕн çĕнĕ редакцине хатĕрленĕ, ăна эпĕ ертсе пынипе ятарласа йĕркеленĕ ĕç комиссийĕ пурнăçларĕ. Уставăн çĕнĕ проекчĕ, ăна хатĕрленин сăлтавĕсем, унти çĕнĕлĕхсем çинчен унăн авторĕсенчен пĕри – Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн членĕ Николай Лукианов тĕплĕнрех каласа парĕ.

Чăваш наци конгресĕн ĕç-хĕлĕн тĕп çул-йĕрĕсемпе çыхăннă ыйтусене малтанах пăхса тухас тĕллевпе Конгресăн ялан ĕçлекен тата ĕç органĕсене – комитетсене – туса хунă. Вĕсем 12: Йĕркелÿпе право енĕпе ĕçлекен комитет, Экономикăпа предпринимательлĕх енĕпе ĕçлекен комитет, Культура енĕпе ĕçлекен комитет, Наукăпа вĕрентÿ енĕпе ĕçлекен комитет, Массăллă информаци хатĕрĕсем енĕпе ĕçлекен комитет, «Сывă наци» комитет, «Чăваш ялĕ» комитет, Регионсемпе ĕçлекен комитет, Çамрăксемпе ĕçлекен комитет, «Чăваш хĕрарăмĕ» комитет, Чăваш Республикин муниципалитет йĕркеленĕвĕсемпе ĕçлекен комитет, Физкультурăпа спорт енĕпе ĕçлекен комитет.

**2014 çулăн пĕрремĕш çурринче Чăваш Республикин мĕн пур муниципалитет районĕнче тата хула округĕнче Чăваш наци конгресĕн представительствисене туса хунă**. Вĕсем – республика территорийĕнчи унăн тытăмне кĕрекен подразделенисем. Вĕсене Конгреса аталантарма, пропагандăлама, унăн ят-сумне çĕклеме пулăшмашкăн, унăн Устав тĕллевĕсене пурнăçлассине тивĕçтерме йĕркеленĕ.

Чăваш наци конгресĕн ĕçтăвкомĕн сотрудникĕсем тăрăшнипе Конгресăн çĕнĕ сайчĕ малалла ĕçлет. Çывăх вăхăтра Конгресс çумĕнчи телеинформаци студийĕ ĕçлеме тытăнĕ.

Эсир пĕлекен «Чăваш тĕнчи» хаçат Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе кăçал та малалла тухса пычĕ.

Чăваш наци конгресĕн ĕçне тухăçлăрах тата лайăхрах тума пулăшас, унăн обществăпа политика пурнăçĕнчи пĕлтерĕшне пысăклатас

тĕллевпе Конгресăн Попечительсен канашне туса хунă. Унăн йышне организацисен ертӳçисемпе представителĕсем, общество, наукăпа культура ĕçченĕсем, Чăваш наци конгресĕн тĕллевĕсене пурнăçлама пулăшмашкăн хатĕрскерсем, кĕчĕç.

Пурте куратпăр: чăваш халăхĕн республика тулашĕнче пурăнакан ывăл-хĕрĕн пулăшăвĕ çине таянса Чăваш Ен пысăк ĕçсене çул парать. Пирĕн республика пулăшнипе регионсенче те нумай енĕпе ĕçлеççĕ. Калăпăр, Акатуй йĕркелесси, ачасене тăван чĕлхене вĕренмелли пособисемпе тивĕçтересси, наци культура центрĕсем йĕркелесси, музейсем, паллă чăвашсен палăкĕсене уçасси, чăваш наци кĕрешĕвĕн турнирĕсене йĕркелесси.

Вырăнти шкулта «Кăнна Кушкин паянхи пурнăçĕ тата малашлăхĕ» темăпа «çавра сĕтел» йĕркелерĕç. Шкул тенĕрен пĕр япала шухăша ячĕ. Иван Яковлевич Яковлев палăкĕ умне хăнасене кĕтсе илме ачасем тухнăччĕ. «Вун тăватă вĕренекен – акă пирĕн пĕтĕм шкул коллективĕ», – терĕç пире. Чăн та, 200 ачана йышăнмалли пӳлĕмсем пуш-пушах. Пĕрремĕшпе тăххăрмĕш классене 14 ача çӳрет. Ара, шкул хупăнасси патнех çитсе тăтăмăр-и капла?

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Гаврилов пĕлтернĕ тăрăх – коллективлă хуçалăхсем арканнă тапхăр ял сăн-сăпатне хытах сиен кӳнĕ. Ĕç çуккипе халăх хулана туртăнать. Халĕ 211 хуçалăх кĕрет ял тăрăхне: вĕсенче пурĕ 419 çын.

– Ял пурнăçне чĕрĕлĕх кĕртме пултарассăн туйăнать, – терĕ Николай Угаслов. – Ман шутпа, ял тăрăхĕн аталанăвĕн программине хатĕрлеме вăхăт çитнĕ. Çĕнĕ ĕç вырăнĕсем тăвасси çинчен тĕплĕ шухăшламалла. Тепĕр чуна ыраттаракан ыйту – Яковлев шкулне сыхласа хăварасси. Тен, шкул интернат уçсан лайăхрах. Таврари ялсенчи ачасене пухас. Кунта пĕлӳ пухма, ĕçе хăнăхтарма условисем кирлĕ. Строительство материалĕсемпе пулăшăпăр. Кăçалах çуллахи лагерь уçма нумай укçа кирлĕ мар.

Шухăшĕ аван. Иван Яковлевич вĕрентӳ тытăмĕнче ĕçе кĕртнĕ çĕнĕлĕхсем паян та хăйсен пĕлтерĕшне çухатман. Шкул интернат ăслăлăх центрĕ пулса тăрĕччĕ. Халь мĕн куратпăр-ха? Хăш-пĕр пĕчĕк ялти ачасене 20–30 çухрăмри шкулсене леçеççĕ.

ЧНК вице-президенчĕ Валерий Клементьев Краснодар крайĕн тĕслĕхĕпе усă курма сĕнет. Унта уйрăмах пултаруллă ачасем валли ятарлă шкул уçнă. Щетин шкулĕ хăнăхнă вĕренӳ программисемпе çеç ĕçлемест. Пулас ертӳçĕсене мĕн пĕчĕкрен хатĕрлеççĕ. Вĕт-шакăр икĕ-виçĕ çулхи вĕренӳ курсне пĕр çулта шĕкĕлчет.

**Пĕр çунат айĕнче**

Ĕпхĕве çул çывăх мар. Машинăпа Тутарстан чăвашĕсен пĕрлĕхĕн ертӳçипе Константин Яковлевпа пĕрле ларса кайрăмăр. Çав тери маттур чăваш çул тăршшĕпе хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пычĕ:

– Пушкăрт чăвашĕсем темиçе наци культура центрĕ йĕркеленĕ, кашни уйрăммăн ĕçлесшĕн. Пĕр çунат айĕнче пулмалла пирĕн. Сапаланса кайсан ним йĕрки те пулмĕ. Тутар чăвашĕсем питĕ пĕрлĕхлĕ, хастар. Республика правительстви пирĕн сатурлăха курать, хаклать. Мĕнле кăна мероприяти иртмест пулĕ. Чи илемлĕ чăваш пикисен конкурсĕсене ирттеретпĕр. Пуш уйăхĕн 8-мĕшĕсенче ĕçре палăрнă хĕрарăмсене чысларăмăр. Шкул ачисене те манмастпăр. Хамăрăн юрăпа ташă ансамбльне йĕркелесшĕн. Пурте пĕр çыхăра тăрăшатпăр.

Пушкăртсен тĕп хули хитре çанталăкпа кĕтсе илчĕ. Чăвашсен пĕрлĕхĕн ертӳçи Валерий Сидоров çĕкленӳллĕ кăмăллăччĕ. ЧНК пуçлăхĕ Николай Угаслов килнĕшĕн уйрăмах хĕпĕртенĕ.

– Виççĕмĕш съезд паллă самантра, культура çулĕнче иртет, – тет Валерий Александрович. – Пушкăрчĕ, чăвашĕ, вырăсĕ – эпир пурте пĕр кимĕ çинче, хамăр культурăна, йăла-йĕркене упраса хăварсан халăх пурăнать. Чăвашсен пĕрлĕхне туса хурсанах ентешсене пĕр çемьене пĕрлештерес тĕллевпе ĕçленĕ эпир. Пушкăрт Республикинче пурĕ 107 пин чăваш. Акă мĕнле хăват пирĕн! Çакна Р. Хамитов Президент та лайăх ăнланать. Тĕрĕссипе, чăвашсем те влаç тытăмĕнче вăй хураççĕ.

**– Пĕрлĕх никĕсне хывнă çынсене тав сăмахĕ калама сăлтав пур эппин.**
– Çапла, пĕрремĕш Канашăн ĕçтăвкомне ертсе пынă Георгий Петрович Шушпанов, Алексей Александрович Кондратьев академик, Иван Григорьевич Тарасов, чăваш халăхĕшĕн сумлă ĕç тунă Василий Васильевич Николаев, çавăн пекех Василий Григорьевич Никитин, Татьяна Николаевна Ванюшина, Анна Никоновна Федорова тата ыттисем.

**– Съезд Иван Яковлевич Яковлев çуралнă кун иртет. Мĕнлерех тĕллевсем палăртатăр?**
– Пирĕн халăха çавăн пек мăнаçлă çын парнелени – телей. Хамăр утăмсенче ун халалĕсене тĕпе хуратпăр. Асра юлнă самант чылай. Чăваш Енĕн культура кунĕсем ăнăçлă иртрĕç. «Нефтяник» культура керменĕнче ăна уçма ЧР Пуçлăхĕ М. Игнатьев та килсе чыс турĕ. Пин-пин чăваша савăнăç парнелерĕç профессиллĕ театрсемпе уйрăм ансамбльсем. Пирĕн Канаш ертӳçисем Игнатьевпа хăйĕнпе те тĕл пулса калаçрĕç. Миронов ячĕллĕ вырсарни шкулĕнче вара ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕпе Ю. Поповпа ăш пиллĕ калаçу иртрĕ. Çыхăнусем аталанаççĕ. Тăван республикăпа çывăхлатакан енсене пуянлатса пырасшăн эпир.

Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.
*«Чăваш тĕнчи», 2014, 3№.*

## В ЧЕБОКСАРАХ ПРОШЕЛ I ВСЕЧУВАШСКИЙ ЭКОНОМИЧЕСКИЙ ФОРУМ

*22 июня в Чебоксарах в рамках празднования Дня Республики прошел I Всечувашский экономический форум «Чувашская инициатива: национально-культурная общность как инструмент развития экономического сотрудничества». На мероприятие приехали 93 участника из 19 субъектов страны. Среди них – бизнесмены, представители государственных структур и общественных организаций Челябинской, Тюменской, Оренбургской областей, гг. Москва и Санкт-Петербург, Краснодарского края, Республики Крым. В работе форума приняли участие председатель Кабинета Министров Чувашской Республики Иван Моторин, руководитель Администрации Главы Чувашской Республики Александр Иванов, а также члены Правительства.*

Главной целью форума, **организатором которого выступил Чувашский национальный конгресс**, стало повышение инвестиционной привлекательности Чувашии и объединение усилий представителей бизнеса, науки и власти в сфере реализации проектов ЧНК.

Открыл форум депутат Государственного Совета Чувашской Республики, президент межрегиональной общественной организацин «Чувашский национальный Конгресс» **Николай Угаслов** и вручил меценатам Почетные грамоты ЧНК.

Приветствуя участников I Всечувашского экономического форума, Председатель Правительства республики **Иван Моторин** отметил, что чувашские диаспоры представлены в 33 регионах России и в 6 зарубежных странах. «Все мы знаем, что каждый второй чуваш живет за территорией республики. Сегодня многие из вас состоялись у себя в регионах, как предприниматели, уважаемы как региональной, так и муниципальной властью, вы имеете состоявшийся бизнес. Каждый из вас может внести в целом вклад в развитие и республики, и соседних регионов», – отметил он.

Члены Правительства республики рассказали собравшимся об экономическом потенциале Чувашии, развитии сельского хозяйства, образования, туризма и сохранении традиций чувашского народа. Глава Мининформполитики Чувашии **Валентина Андреева** сообщила, что в ведении ведомства находятся 27 организаций – это автономные учреждения, ГУПы и ОАО. В республике на чувашском языке издаются 19 районных газет, на чувашском и русском – 7, на русском – 3, на татарском – 2. Министр предложила собравшимся возродить в регионе качественную деловую прессу. «Все вы личности яркие, безусловно, талантливые, состоявшиеся. Вы элита не только Чувашской Республики, но и Российской Федерации, поэтому история вашего успеха может стать достоянием и республики, и служить примером для граждан, которые также, как вы, планируют стать бизнесменами, предпринимателями и создать свое дело. У каждого у вас есть уникальный опыт, и он сам по себе является уникальной социальной ценностью», – подчеркнула она, обращаясь к участникам форума.

Юрий МИХАЙЛОВ.
*3.07.2014.*

## И ВНОВЬ НА ЧУВАШСКУЮ ЗЕМЛЮ ПРИШЕЛ ДРЕВНИЙ, ИСКОННО НАЦИОНАЛЬНЫЙ, ПРЕКРАСНЫЙ ПРАЗДНИК «АКАТУЙ»

*Нынешний День республики в Чувашии второй раз замечательно соединился с «Акатуем» – одним из самых старинных и главных праздников чувашского народа. Государственное торжество украсили и обогатили народные традиции, обычаи и обряды, пронизанные исконно национальными чувствами и переживаниями, хранимыми памятью народа и передаваемыми из поколения в поколение. «Акатуй–2014» второй раз пришёл в статусе всечувашского празднества. Древнее действо собрало в Чебоксарах свыше 50 коллективов из регионов России, районов и городов Чувашии, а это более 1000 участников.*

Начался праздник в 11 ч. на священном месте «Акатуя» – возле монумента Матери-Покровительницы. О его приходе заявили и благословили его три мучавара – так в древности именовали жрецов, руководивших обрядом дароприношения. Мучаварами «Акатуя–2014» выступали **Евгений Ерагин** – один из ведущих краеведов и знаток народных традиций Чувашии и Среднего Поволжья, народный академик Чувашии, заслуженный учитель Чувашской Республики, **Виталий Станьял** – литературовед, поэт, публицист, краевед, общественный деятель, кандидат филологических наук, доцент, народный академик, заслуженный работник образования Чувашской Республики и **Владимир Иванов** – доктор педагогических наук, профессор, академик, заслуженный работник высшей школы Чувашской Республики.

После благословения мучаваров центром обряда стали парень и девушка, олицетворявшие Землю и Небо. Раскачивание их на качелях выступало символом оплодотворения Земли-кормилицы. По поверью, если парень и девушка вместе качаются на качелях, значит, они вместе навсегда. Звучала мысль о вечности Земли и Неба, о вечности красоты мира. Со всех сторон их окружали включённые в ритуальное хореографическое действо девушки с коромыслами и вёдрами. Звучала просьба к Всевышнему – Ҫӳлти Турӑ о животворящей влаге, воде – основе жизни на земле, о том, чтобы природа благоприятствовала сбору хорошего урожая. Затем ведущие пригласили руководителей коллективов – участников «Акатуя». По древней традиции они в знак благодарения обвили Качели жизни разноцветными лентами–сурпанами.

После представления руководителями своих коллективов делегация «Акатуя» во главе с мучаварами направились в Парк культуры и отдыха им. 500–летия Чебоксар к ритуальному памятнику Юпа, чтобы провести древний обряд жертвоприношения (Чӳк тума). Считалось, что ваттисем (предки) покровительствуют своим живым потомкам–сородичам и их нужно чествовать.

На священном же месте «Акатуя» начались хороводы (вӑйӑ карти), зазвучали чувашские народные песни. Затем все выстроились в красочную колонну со штандартами – вначале коллективы регионов России, а за ними коллективы из Чувашии. Шествие с флагом «Акатуя» направилось по пешеходному мосту на Красную площадь. Там участников обряда мелодиями праздничных песен встречала Чувашская государственная академическая симфоническая капелла во главе с народным артистом Российской Федерации **Морисом Яклашкиным**. Колонны образовали тысячеголосый хор «Акатуя».

Под звуки старинной застольной «Алран кайми», гимна «Акатуя», в центе площади на флагштоке был водружён флаг «Акатуя». С приветственными словами к гостям и участникам праздника обратились заместитель Председателя Кабинета Министров Чувашской Республики – Руководитель Администрации Главы Чувашской Республики **Александр Иванов** и президент Чувашского национального конгресса, депутат Государственного Совета Чувашской Республики **Николай Угаслов**. «Акатуй» на чувашской земле был объявлен открытым. Сводный хор под управлением профессора Мориса Яклашкина исполнил гимны России и Чувашии. Чувства радости, единения вылились в совместное исполнение песен чувашских композиторов Григория Хирбю, Германа Лебедева и Михаила Михайлова.

Театрализованное действо праздника продолжила встреча с историческими личностями чувашского народа в исполнении драматических артистов. Присутствующих поздравляли с праздником вождь племени гуннов Атилла (заслуженный артист Чувашской Республики **Валерий Карпов**), царь Алмуш патша (народный артист Чувашской

Республики **Иван Иванов**), Иван Яковлевич Яковлев (заслуженный артист Российской Федерации **Василий Павлов**) и Сеспель (заслуженный деятель искусств Чувашской Республики **Арсений Тарасов**).

Широка панорама нынешнего «Акатуя»! Здесь и выступление одарённых детей Чувашии, и хореографическая композиция «Поклон земледельцу», и показательные выступления спортсменов, спортивные состязания (кӗрешӳ, армспорт), игры, забавы. В 13:30 час. на Красной площади начнётся представление регионов компактного проживания чувашей Российской Федерации, а у монумента Матери–Покровительницы – выступления самодеятельных коллективов муниципальных районов и городских округов Чувашской Республики, вслед за ними – коллективов художественной самодеятельности из субъектов Российской Федерации и зарубежных стран. «Акатуй» включит и концерт артистов чувашской эстрады. А в 17:30 час. от Национальной библиотеки Чувашской Республики начнётся шествие II Всечувашского праздника «Акатуй» с участниками XXII Всероссийского фестиваля народного творчества «Родники России».

Светлана МАКАРОВА, заслуженный деятель искусств Чувашии.
*Сайт ЧНК, 3.07.2014.*

## ЧНК ДЕЛЕГАЦИЙӖ – ҪӖПӖРТЕ

Ырӑ пурнӑҫ шыраса тахҫан чӑвашсем аякри Ҫӗпӗре куҫа-куҫа кайнӑ. Унта тӗпленсе ҫӗнӗ пурнӑҫ пуҫланӑ. Пирӗн йӑхташӑмӑрсем кайнӑ ҫулпах кӑҫалхи июлӗн 2-мӗшӗсенче Чӑваш наци конгресӗн пултарулӑх ушкӑнӗ аякри чӑвашсен пурнӑҫӗпе, ӗҫӗ-хӗлӗпе паллашма Красноярскпа Иркутск тӑрӑхне тухса кайрӗ. Делегатсен йышӗнче – Чӑваш наци конгресӗн культура енӗпе ӗҫлекен комитет ертӳҫи, чӑваш тумӗн ӑсти, Чӑваш Республикин культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ Зинаида Воронова, Сӗнтӗрвӑрри ентешлӗхӗн ертӳҫи тата эстрада юрӑҫи Андрей Кузнецов, Людмила Кинер юрӑҫ тата тинтерех ҫеҫ Чӑваш наци конгресӗнче йӗркеленнӗ информаци службин ертӳҫи Зоя Яковлева.

*16.07.2014.*

## ЧНК ПРЕЗИДЕНЧӖ НИКОЛАЙ УГАСЛОВ – ШУПАШКАР ХУЛИН ХИСЕПЛӖ ГРАЖДАНИНӖ

Шупашкар хула Пухӑвӗн депутачӗсен йышӑнӑвӗпе килӗшӳллӗн тӗп хулан тата Чӑваш Республикин социаллӑ аталанӑвне пысӑк тӳпе хывнӑшӑн,чӑваш халӑхӗшӗн сахал мар пархатарлӑ ӗҫ тунӑшӑн «Шупашкар хулин Хисеплӗ гражданинӗ» ята 2014 ҫулта «ТУС» акционерсен хупӑ обществин тӗп директорӗ, ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗ, Чӑваш наци конгресӗн президенчӗ Николай Федорович Угаслов тивӗҫнӗ. Ун ҫинчен ҫурла уйӑхӗн 12-мӗшӗсенче Шупашкар хула депутачӗсен Пухӑвӗн черетсӗр 42-мӗш ларӑвӗнче пӗлтернӗ. Ку ыйтупа вырӑнти хӑй тытӑмлӑх тата депутат этикин яланхи комиссийӗн председателӗ Николай Владимиров тухса калаҫнӑ. Чӑваш наци конгресӗн хастарӗсем савӑнӑҫлӑ ҫак хыпара хапӑл туса йышӑнчӗҫ.

ЧНК пресс-служби.
*14.08.2014.*

## ЫР КӐМӐЛЛӐХ ФОНЧӖ ҪИНЧЕН

*Ҫурла уйӑхӗн 28-мӗшӗсенче Чӑваш наци конгресӗн конференц-залӗнче ҫӗнетнӗ Президиумӑн черетлӗ ларӑвӗ иртрӗ.*

Кун йӗркинче Чӑваш наци конгресӗн Ыр кӑмӑллӑх фончӗн Уставне ҫирӗплетесси тата фонда ертсе пыракансемпе ӑна тӗрӗслесе тӑракансене суйласси пулчӗ. Президиум пайташӗсем паянхи кун пӑшӑрхантаракан ытти ыйтусене те пӑхса тухрӗҫ.

Малтанах ЧНК пӗрремӗш вице-президенчӗ **Валерий Клементьев** ларӑва пухӑннисене Устав проекчӗпе паллаштарчӗ. ЧНК президенчӗ Николай Угаслов ыйтнипе ларӑва пуҫтарӑннисем Ыр кӑмӑллӑх фончӗн Уставӗн проектне пӑхса тухса хӑйсен сӗнӗвӗсене пачӗҫ.

**Петр Ивантаев** вице-президент Устава самай усӑллӑ сӗнӳсем хушрӗ. Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министрӗ, Президиум пайташӗ **Валентина Андреева** та проекта тӗплӗн тишкерсе хӑйӗн шухӑшӗсене палӑртрӗ.

Президиумра сумлӑ ҫынсем – юристсем, экономистсем тата патшалӑх учрежденийӗсенче ӗҫлесе чылай опыт пухнӑ ҫынсем пулни Устава хӑвӑрт пӑхса тухса ҫирӗплетме май пачӗ.

Пухӑннисем пӗр кӑмӑллӑ пулса Чӑваш наци конгресӗн Ыр кӑмӑллӑх фончӗн директорӗ пулма Президиум пайташне, «Дент-а-мед» стоматологи центрӗн тӗп врачне **Юрий Зорина** сӗнчӗҫ. Попечительсен Канашӗн ертӳҫине **Петр Ивантаева**, фондӑн президиумӗн ертӳҫине ЧНК вице-президентне, Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн Председателӗн ҫумне **Олег Мешкова** суйларӗҫ.

Умра ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ. Ҫавна шута илсе Чӑваш наци конгресӗн Президиумӗн черетлӗ ларӑвӗнче шкулсемпе тата ытти вӗренӳ учрежденийӗсемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлесси ҫинче чарӑнса тӑчӗҫ. Пӗлӳ кунӗнче Президиум пайташӗсем пурте тенӗ пекех республикӑмӑрти шкулсене ҫитсе килес кӑмӑл пуррине пӗлтерчӗҫ.

ЧНК пайташӗсене татӑлса пӗтмен ыйту – чӑваш чӗлхине манса пыни, тӑван чӗлхепе калаҫманни пӑшӑрхантарать. Шкулсенче чӑваш чӗлхи урокӗсен шутне ӳстересси ҫинчен кӑна мар, вӗсен пахалӑхӗ пирки, тӑван чӗлхепе, хамӑр йӑла-йӗркепе кӑсӑклантарса ямалли мелсем пирки те калаҫрӗҫ ларӑва пуҫтарӑннисем.

Николай Угаслов пархатарлӑ ҫак ӗҫе ача сачӗсенченех пуҫламалли, ку ыйтупа ҫитес вӑхӑтра тепре пухӑнмалли тата ятарлӑ программа йышӑнмалли пирки пӗлтерчӗ.

Регионсенчи чӑваш наци культура автономийӗсемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлеме ҫӗнӗ мелсем шырамалли ҫинче те чарӑнса тӑчӗҫ Президиум ларӑвӗнче.

Ку ӗҫре интерактивлӑ майсемпе усӑ курни паха, анчах та куҫа-куҫӑн калаҫса, пӑшӑрхантаракан ыйтусене пӑхса тухса пӗр-пӗрин опычӗпе паллашнин усси нумайрах пек туйӑнать Конгрес хастарӗсене.

Ҫитес вӑхӑтра Чӑваш наци конгресӗн Президиумӗ Тутарстанри Аслӑ Пӑлхарӑн сӑваплӑ ҫӗрӗ ҫинче хӑйӗн анлӑ ларӑвне ирттерме килӗшсе татӑлчӗ. Унта ҫивӗч ыйтусене хускатса вӗсене усӑллӑ татса пама тӗв турӗҫ.

ЧНК информаци службин ертӳҫи
Зоя ЯКОВЛЕВА.
*28.08.2014.*

## ШУПАШКАР УЙРӐМӖ ЙӖРКЕЛЕНЧӖ

*Хальхи вӑхӑтра Чӑваш наци конгресӗн уйрӑмӗсем кашни районтах ӗҫлеҫҫӗ. Юстици министерстви общество организацийӗн Уставне ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн Шупашкар хула уйрӑмӗ йӗркеленчӗ.*

ЧНКн пуҫламӑш тытӑмне никӗслеме чӑвашлӑх ӗҫӗн хастарӗсем йышлӑн пухӑнчӗҫ. Пухӑва ЧНК президенчӗ **Николай Угаслов** уҫрӗ. Шупашкар хула пуҫлӑхӗ **Леонид Черкесов** тӗп хула пурнӑҫӗ, кулленхи ӗҫ-хӗл, тӗллевсем ҫинчен калаcа пачӗ. Юлашки вӑхӑтра Шупашкар аталану ҫулӗпе ӑнӑҫлӑ пырать. «Хула ертӳлӗхӗ хӑйӗн кулленхи ӗҫӗнче ачасен ырлӑхне тата халӑхӑн хӑрушсӑрлӑхне тӗпе хурать, – терӗ Л. Черкесов. – Кӑҫал, тӗслӗхрен, пилӗк ача сачӗ хута кайрӗ. Шкулчченхи пӗлӳ учрежденийӗсене 20 ҫул вуҫех те туман. Садиксенче хушма вырӑнсем йӗркеленӗ. Ҫул юсаҫҫӗ, ҫӗнӗрен хываҫҫӗ. Территорисене хӑтлӑлатас енӗпе те ӑнӑҫлӑ ӗҫлеҫҫӗ. Ҫынсене спортпа туслашма условисем туса параҫҫӗ.

Л. Черкесов каланӑ тӑрӑх – малашне пурнӑҫламалли ӗҫ те чылай, тӗллевсем пысӑк. Чӑваш наци конгресӗпе пӗрле тумалли те сахал

мар. Çавăнпа Шупашкар уйрăмĕпе пĕр шухăшлă пулса ĕçлессине палăртрĕ. ЧНК президенчĕ Н. Угаслов хулана аталантарас ĕçре Конгресс хастарĕсем яланах пулăшма хатĕррине пĕлтерчĕ. ЧНК вице-президенчĕ **П. Ивантаев** тăван халăх йăли-йĕркине тата чĕлхине упраса хăварасси тĕпре пулнине шута хурса Шупашкар уйрăмне йĕркелеме йышăнни çинчен каларĕ. «Кирек епле организаци те никĕс пулмасан юхăнать, – терĕ вăл. – Чăваш наци конгресĕ те пуçламăш тытăмсемсĕр вăйсăр. Унăн йышĕнче чăвашлăхшăн чунне парса ĕçлеме хатĕр çынсен тăмалла. Шупашкарти уйрăмăн ĕçĕ нумай. Сăмахран, хула шкулĕсенче чăваш чĕлхине вĕрентес енĕпе çитменлĕх чылай».

Тата ытти çивĕчлĕхе те палăртрĕç пухăва хутшăннисем. Çак шутра – хула урамĕсен, общество транспорчĕн чарăну вырăнĕсен ячĕсене чăвашла тĕрĕс çырасси, Г. Лебедев ячĕллĕ наци интернат шкулне чĕртсе тăратасси... Ку ыйтусем тахçанах калаçтараççĕ, анчах вĕсене халĕччен те татса параймаççĕ. Пухура ЧНКн Шупашкарти уйрăмĕ çак ĕçре çивĕчрех пулассине шаннине палăртрĕç.

Тĕп хулара ЧНКн пуçламăш организацийĕ кирлине пурте çирĕплетрĕç. Николай Угаслов ăна ертсе пыма Конгресс Президиумĕн членне **Эдуард Бахмисова** сĕнчĕ. **Юрий Зорин Василий Федотов** кандидатурине ырлама ыйтрĕ. Ларăва пухăннисем кандидатсен пултарулăхне тишкернĕ хыççăн йывăр лава туртма **Э. Бахмисова** шанчĕç. Хыççăнах ЧНК Шупашкар хулин уйрăмĕн Канашне суйласа çирĕплетрĕç. Унăн йышне 28 хастар чăваш кĕчĕ.

Валентина БАГАДЕРОВА.
*«Хыпар», 1.10.2014, 195№.*

## ЧНКн РАЙОНСЕНЧИ УЙРĂМĔСЕН СЕМИНАР-КАНАШЛĂВĔ

*Конгресăн вырăнти уйрăмĕсене йĕркелес ĕç вĕсленчĕ. Унта районсенчи чи хастар та маттур çынсем суйланчĕç. Йĕркелӳ ĕçĕсем пĕтнĕ пулсан та Конгресс Президиумĕн хастарĕсен çĕнĕ Устава çирĕплетиччен вĕсене пуçтарса калаçма май килмерĕ. Çавăнпа вырăнти уйрăмсен мĕнле ĕçлемелли пирки нумай ыйтусем сиксе тухаççĕ. Çак çитменлĕхе пĕтерме Чăваш наци конгресĕ йĕркеленипе чӳкĕн 22-мĕшĕсенче Чăваш наци библиотекин пысăк залĕнче районти ЧНК уйрăмĕсен делегачĕсем семинар-канашлăва пуçтарăнчĕç.*

Регистрациленĕ хыççăн районсенчен пурĕ аллă виçĕ çын килни паллă пулчĕ. Вĕсемсĕр пуçне кунта ентешлĕхсен пуçлăхĕсем те пулчĕç.

Канашлăва ЧНК президенчĕн пĕрремĕш çумĕ, ĕç тăвакан комитет пуçлăхĕ **Валерий Клементьев** уçрĕ. Вăл семинарăн тĕп тĕллевĕ вырăнти уйрăмсен ĕçĕнче мĕнлерех йывăрлăхсем пуррине уçăмлатасси тата ăна пĕрле татса пама тăрăшасси пулнине каларĕ. Канашлăва малалла ертсе пыма ЧНК президенчĕн çумне **Петр Ивантаева** сĕнчĕ.

Петр Васильевич районти уйрăмсен ертӳçисене ку çĕнĕ ĕç пулни пирки, вăл Конгресс Уставĕпе килĕшӳллĕн пулса пынине каларĕ. Вырăнти уйрăмсем туса хурса вĕсене ĕçлеттерсе яни Конгреса пĕрлĕхлĕ ĕçлеме май парĕ.

Малашне Устав тăрах Чăваш наци конгресне кĕрес тесен кашнин вырăнти уйрăма ыйтса çырмалла. ЧНК пайташĕ пулма çĕнĕ Устав тăрăх вун саккăра çитнĕ, Конгресс тĕллевĕсене ырласа йышанакан хастарсем пултараççĕ. Семинара килнĕ делегатсенчен хĕрĕх çын ытла тӳрех Конгреса кĕме ыйтса заявлени çырчĕç.

Вырăнти уйрăмсенчен килнисем семинар-канашлу ĕçне хастар хутшăнчĕç. ЧНК районсен уйрăмĕсен ертӳçисенчен нумайăшĕ пĕрле ĕçлесе Чăваш наци конгресĕн ĕç-хĕлне лайăхлатасси çинчен шутлани палăрчĕ.

Чăваш наци конгресĕн «Чăваш ялĕ» комитет ертӳçи, Шупашкар уйрăмĕн председателĕ **Эдуард Бахмисов** ялсемпе мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕ. «Сывă наци» комитет председателĕ **Юрий Зорин** вара халăх сывлăхне упраса хăварассипе Конгресс еплерех тăрăшнине уçăмлатрĕ. Культура комитетне ертсе пыракан **Зинаида Воронова** кăçал Конгресс хастарĕсем регионсемпе еплерех çыхăнусем тытни çинче, унти чăвашсен ĕçне вăйлатма пулăшни çинче чарăнса тăчĕ. Красноармейскинчи уйрăм ертӳçи **Зинаида Махайлова** ЧНК ĕç планĕпе килĕшӳллĕн чăвашлăха упраса хăварассипе районта тĕрлĕ ĕçсем туса ирттернине пĕлтерчĕ.

Малашне çакнашкал тĕл пулусене тĕрлĕ районта ирттерме йышăнчĕç.

Зоя ЯКОВЛЕВА.
*27.11.2014.*

## «ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔ» РЕГИОНСЕН ХУШШИНЧИ ОБЩЕСТВО ОРГАНИЗАЦИЙĔН ВАТТИСЕН КАНАШĔН ПАЙТАШĔСЕН ЙЫШĔ ÇИНЧЕН

«Чăваш наци конгресĕ» регионсен хушшинчи общество организацийĕн Ваттисен Канашĕн ертӳçи В.Я. Шадриков сĕннипе, кандидатсем хăйсем килĕшнипе тата халăх шухăшне шута илсе Чăваш наци конгресĕн Ваттисен Канашĕн йышне çак çынсене кĕртес:

**1. Афанасьев Евгений Васильевич** – скульптор
**2. Афанасьев Порфирий Васильевич** – Чăваш халăх поэчĕ
**3. Гордеев Денис Викторович** – çыравçă
**4. Григорьев Николай Григорьевич** – медицина наукисен докторĕ
**5. Груздева Клара Ильинична** – общество тата патшалăх деятелĕ
**6. Дмитриев Иосиф Александрович** – Чăваш çамрăксен театрĕн тĕп режиссерĕ
**7. Егоров Николай Иванович** – филологи наукисен докторĕ
**8. Ерусланова Раиса Ильинична** – истори наукисен кандидачĕ
**9. Иванов Владимир Александрович** – педагогика наукисен докторĕ
**10. Иванов Николай Иванович** – общество тата патшалăх деятелĕ
**11. Карягин Федор Александрович** – тавра пĕлӳçĕ, профессор
**12. Кибеч Анатолий Ильич** – çыравçă
**13. Кириллов Николай Кириллович** – ветеринари наукисен докторĕ
**14. Козлов Михаил Васильевич** – строитель
**15. Кузьмина Вера Кузьминична** – СССР халăх артисчĕ
**16. Кураков Лев Пантелеймонович** – экономика наукисен докторĕ, академик
**17. Мадуров Федор Иванович** – скульптор
**18. Макаров Христофор Макарович** – фермер
**19. Марков Анатолий Семенович** – физикăпа математика наукисен докторĕ
**20. Матвеев Геннадий Матвеевич**– профессор
**21. Перов Иван Николаевич** – Чăваш радио редакторĕ
**22. Пряников Виссарион Семенович** – техника наукисен докторĕ
**23. Романов Василий Игнатьевич** – РФ тава тивĕçлĕ агрономĕ
**24. Сапожников Валерий Васильевич** –ЧР Пенсионерсен союзĕн ертӳçи
**25. Стекольщикова Ираида Ивановна** – ЧР Патшалăх Канашĕн эксперчĕ
**26. Федотов Василий Артемьевич** – философи наукисен докторĕ
**27. Шадриков Василий Яковлевич** – ЧР АПК ветеранĕсен союзĕн ертӳçи
**28. Яковлев Николай Яковлевич** – экономика наукисен кандидачĕ

**Президент Н.Ф. Угаслов.**

**«Чăваш наци конгресĕ» регионсен хушшинчи общество организацийĕн Ваттисен Канашĕ**

**Йышăну 14.01.2015**

Чăваш наци конгресĕн положенийĕпе килĕшӳллĕн Ваттисен Канашĕн ертӳçин çумĕсем пулма çаксене çирĕплетес:

**1.Карягин Федор Александрович**
**2. Мадуров Федор Иванович**
**3. Федотов Василий Артемьевич**

**Президент Н.Ф. Угаслов.**

**«Чăваш наци конгресĕ» регионсен хушшинчи общество организацийĕн Ваттисен Канашĕ çинчен калакан**
**ЙĔРКЕ (ПОЛОЖЕНИ)**

**1. Пĕтĕмĕшле йĕркесем**

1.1. «Чăваш наци конгресĕ» регионсен хушшинчи общество организацийĕн Ваттисен Канашĕ (малалла – Ваттисен Канашĕ) Чăваш наци конгресĕн (малалла – Конгресс) пĕрле канашлакан органĕ пулса тăрать.

1.2. Ваттисен Канашне Конгресс Президентне суйланă тапхăрта ĕçлеме халăх хуçалăхне, ăслăлăха, культурăна аталантарас, чăваш халăхĕн наци хăй евĕрлĕхне тата наци пахалăхне упраса хăварас ĕçре курăмлă çитĕнӳ тунă 65 çултан аслăрах хастар çынсен йышĕнчен йĕркелеççĕ.

1.3. Ваттисен Канашĕ çинчен калакан Йĕркене (положение) Конгресс Президенчĕ

çирĕплетет.

1.4. Ваттисен Канашĕ хăйĕн ĕçне общество йĕркипе, Конгресс Уставне тата çак Йĕркене (положение) пăхăнса туса пырать.

1.5. Ваттисен Канашĕн йышăнăвĕсем сĕнÿллĕ майпа пулса пыраççĕ.

1.6. Ваттисен Канашĕн ĕç вырăнĕ: Шупашкар хули, Воробьев композиторсен урамĕ, 10-мĕш çурт.

**2.Ваттисен Канашĕн тĕп тĕллевĕсемпе тивĕçĕсем**

2.1. Конгресс палăртнă тĕп тĕллевсемпе тивĕçсене, Уставра палăртнă ыйтусене ĕçе кĕртме пулăшасси.

2.2. Экономикăна, чăваш халăхĕн чĕлхипе культурине аталантарма тата хăйсене евĕрлĕхĕпе пуян ăс-хакăлне, кăмăл-сипет еткерлĕхне упраса хăварма пулăшакан ыйтусене сÿтсе явасси.

2.3. Республика пурнăçĕнче Конгресс йĕркелесе ирттерекен ĕçсене общество экспертизи тума хутшăнасси.

2.4. Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе, общество тата бизнес пĕрлешĕвĕсемпе, массăллă информаци хатĕрĕсемпе ăслăлăхпа практика конференцийĕсем, семинарсем, çавра сĕтелсем, ăслăлăх экспедицийĕсем ирттерме, чăваш халăхĕн историйĕпе чĕлхине, культурипе йăли-йĕркине тĕпчес енĕпе пĕрле ĕçлесси.

2.5. Чăваш Республикин наци политикине йĕркелесе пырас ĕçе хутшăнасси.

2.6. Конкурс комиссийĕсен, жюрисен, наградăсем паракан комиссисен, хула аталанăвне йĕркелесе пырас ĕçсен канашне тата ытти ĕçсене хутшăнасси.

2.7. Чăваш халăхăн паллă çыннисен ячĕсене ĕмĕр асра хăварма, тĕрлĕ мероприятисем ирттерме пуçару тăвасси.

2.8. Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче тата Чăваш Республикин районĕсемпе хулисенче йĕркеленнĕ Ваттисен канашĕсене информаципе меслетлĕх пулăшăвĕ парасси.

2.9. Кÿршĕ республикăсен общество пĕрлешĕвĕсемпе пĕрле тĕрлĕ халăхсем хушшинчи çыхăнусене вăйлатасси.

**3. Ваттисен Канашĕн йышĕ, тытăмĕ тата ертÿлĕхĕ**

3.1. Конгресс Президенчĕн йышăнăвĕпе Ваттисен Канашĕн ертÿçине (председательне) çирĕплетеççĕ.

3.2. Ваттисен Канашĕн ертÿçи Конгресс Президиумĕн пайташĕ пулса тăрать.

3.3. Конгресс Президенчĕ Ваттисен Канашĕн ертÿçи сĕннипе, кандидатсем хăйсем килĕшнипе тата халăх шухăшне шута илсе 30 çын тарăн тăракан Ваттисен Канашĕн йышне йĕркелет.

3.4. Конгресс Президенчĕ Ваттисен Канашĕн ĕçне пĕтĕмĕшле йĕркелет, Ваттисен Канашĕн ертÿçи вара хăйĕн ĕçне тÿрремĕн туса пырать.

3.5. Ваттисен Канашĕн ертÿçи сĕннипе Ваттисен Канашĕ хăйĕн йышĕнчен ертÿçĕн икĕ çумне тата Ваттисен Канашĕн çыруçине суйлать.

3.6. Ваттисен Канашĕн ертÿçи:

– Ваттисен Канашĕн ĕçне йĕркелет;

– Конгресс Президенчĕпе килĕштерсе Ваттисен Канашĕн ларăвĕсен кун йĕркине йĕркелесе ертсе пырать.

**4. Ваттисен канашĕ хăйĕн ĕçне йĕркелени**

4.1. Ваттисен Канашĕ çулталăклăх ĕç планĕ йышăнать, ăна вăл Конгресс Президенчĕпе килĕштерет. Çирĕплетнĕ ĕç планĕ тăрăх ваттисен йышĕнчен ыйтусем хатĕрлекен ĕçлев ушкăнĕсем тăвать, ĕçлев ушкăнĕсен йышне республикăн общество пурнăçне хастар хутшăнакан, социоэкономикăн, чăваш халăхĕн ăс-хакăлĕпе кăмăл-сипетне аталантарас ĕçре палăрнă ветерансене, çавăн пекех экономикăпа культурăн тĕрлĕ енлĕ специалисчĕсене кĕртме пултараççĕ.

Ваттисен Канашĕн ĕçлев ушкăнĕ тĕрлĕ ыйту хатĕрленĕ вăхăтра Конгресс комитечĕсенчен, патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенчен, организацисенчен хăйсене кирлĕ информаци ыйтма ирĕк пур.

4.2. Ваттисен Канашĕн ларăвĕсене Конгресăн вице-президенчĕсем тата Комитетсен ертÿçисем хăйсен ĕçĕсемпе тÿрремĕн çыхăннă ыйтусене татса пама хутшăнаççĕ.

4.3. Ваттисен Канашĕн ларăвĕсене малтан килĕшсе татăлнипе Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен, организацисемпе общество пĕрлешĕвĕсен ертÿçисене чĕнме пултараççĕ.

4.4. Конгресăн ĕç тăвакан комитечĕ Ваттисен Канашне ĕç тума, документсем хатĕрлеме тата информаци енĕпе пулăшса пырать.

**5. Ваттисен Канашĕ ĕçleме пăрахни**

5.1. Ваттисен Канашĕн пайташĕсен полномочийĕсем çакăн пек чухне пĕтеççĕ:

а) Ваттисен Канашĕн йышĕнчен тухма ыйтса (заявлени) çырсан;

ç) Конгресс Уставĕн тата çак йĕркен ыйтăвĕ-хушăвĕсене хирĕçле ĕçсем тусан;

б) Ваттисен Канашĕн ĕçĕнчен хăй хальлĕн пăрансан;

5.2. Ваттисен Канашĕ Конгресс Президенчĕн йышăнăвĕпе ĕçлеме чарăнать.

*2015, кăрлач, 14.*

# ЧНК МĂН КАНАШĔН ЛАРĂВĔ ИРТРĔ

*Кăрлачăн 31-мĕшĕсенче ЧР наци вулавăшĕнче Чăваш наци конгресĕн Мăн Канаш ларăвĕ иртрĕ. Шупашкара çĕр-шывăн ытти регионĕсенче пурăнакан ЧНК пайташĕсем, республикăри районсен Шупашкарти ентешлĕхĕсен ертÿçисем пуçтарăнчĕç. Мăн Канаш иртнĕ май ЧНК район уйрăмĕсен ертÿçисем хăйсен семинар-канашлуне йĕркелерĕç.*

Мăн Канашра пĕлтĕрхи ĕçсене пĕтĕмлетрĕç, кăçалхи çулталăкра мĕн тумаллине палăртрĕç, пуçтарăннă ытти ыйтусене те уçăмлатрĕç.

Малтанах ЧНК пайташĕсене ЧР культура министрĕ **Вадим Ефимов** саламларĕ. Хăй ертсе пыракан министерство 2014 çулта тунă ĕçсемпе паллаштарчĕ, ЧНК пайташĕсене пĕрле ĕçленĕшĕн тав турĕ. Уйрăмах тулай чăвашĕсемпе Конгресс хастарĕсем тачă çыхăнса ĕçлесе чылай ырă ĕç тунине палăртрĕ. Культура çулталăкĕ республикăра сумлă иртнинче ЧНК пайташĕсен тÿпи те пысăк. Çĕр-шывра Литература, Чăваш Республикинче К.В. Иванов çулталăкĕ пуçланнă май Вадим Петрович министр Конгресс хастарĕсене кăçал та пĕрле тачă çыхăнса ĕçлеме сĕнчĕ.

ЧК президенчĕ **Никола Угаслов** Мăн Канаш пайташĕсене Конгресс пĕлтĕр тунă ĕçсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Комитетсем иртнĕ çулталăкра мĕнлерех тăрăшнине уçăмлатрĕ. Уйрăмах хастаррисене асăнчĕ. Чăваш ялĕсенче чи шухăшлаттараканни ĕçкĕпе иртĕхни пулнине шута илсе «Сывă наци» комитетăн ялсемпе тĕплĕнрех ĕçлемеллине, тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсене йĕркелемеллине каларĕ. ЧНК президенчĕ чăвашсене пĕрлештерме, хамăр нацие хисеплеме тата унпа мухтанма, ытти халăхсемпе туслăха çирĕплетме регионсенче иртекен Акатуй пулăшнине асăнчĕ. Уйрăмах Тутарстанти Нурлат хулинче иртекен Уяв чи пысăк шайра иртнишĕн унти чăваш наци культура автономийĕн ертÿçин Константин Яковлевăн тÿпи питĕ пысăккине палăртрĕ.

Малалла Николай Угаслов ЧНКн кăçалхи ĕç планĕпе паллаштарчĕ. Тĕп ĕçсенчен пĕри – Аслă Çĕнтерÿ пулни 70 çул çитнине анлă паллă тăвасси тата К.В. Иванов çулталăкне тивĕçлĕ шайра ирттересси. Ку енĕпе ЧНК пайташĕсем ĕçлеме пуçланă та ĕнтĕ. Май уйăхĕнче Слакпуçĕнче юратнă поэтăмăра асăнса ирттерме палăртнă «Аслă Силпи ялĕнче...» фестиваль положенине культура комитечĕпе «Чăваш ялĕ» комитет çырса хатĕрлесе явапллă вырăнсене салатма та ĕлкĕрнĕ.

вице-президент Тутарстан чăвашĕсем ирттерекен ĕç-пуçпа паллаштарчĕ. Вăл уйрăмах И.Я. Яковлев çуралнă яла Кăнна-Кушкине чĕртсе, çĕнетсе ярассипе ĕçленипе кăмăлли сисĕнчĕ. Кăçал вĕсем «Раççейри чи илемлĕ чăваш ялĕ», «Раççейри чи илемлĕ чăваш шкулĕ», «Раççей шкулĕнчи чи лайăх чăваш чĕлхи кабинечĕ» конкурссем йĕркелессине, ун валли самай пысăк нухрат уйăрнине хыпарларĕ.

Чăваш наци конгресĕ тинтерех çеç йĕркеленĕ Ваттисен Канашĕн председателĕ **Василий Шадриков** Мăн Канаш пайташĕсемпе Конгресс хастарĕсене хăйпе паллаштарчĕ, сумлă ватăсем Конгреса чăваш культурине упрама, наци политикине аталантарма, çамрăксене вĕрентсе пыма пулăшса ĕçлессе шантарсах каларĕ.

Районсенчи ЧНК уйрăмĕсен ертÿçисен ячĕпе Трак енрен килнĕ **Зинаида Михайлова** тухса калаçрĕ. Хăйсем вырăнта еплерех ĕçсем туса ирттернине уçăмлатрĕ.

Республикăри районсен Шупашкарти ентешлĕхĕсен ячĕпе вара Хĕрлĕ Чутай ентешлĕхĕн пуçлăхĕ **Александр Самылкин** сăмах илчĕ. Ун шухăшĕпе – ял уявĕсене ку ялтан ытти регионсене куçса кайса унта ялсем йĕркеленĕ ентешсене хутшăнтарма пуçламалла.

«Хыпар» издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ **Валери Туркай** Шупашкарта Константин Ивановăн палăкне питĕ мелсĕр вырнаçтарнине каларĕ. Валери Туркай палăка театр умне куçарма сĕнчĕ. Шупашкарти тепĕр палăк та хăй вырăнĕнче мар иккен. Валери Туркай шухăшĕпе – Петĕр Хусанкайăн палăкĕ тем тесен те хула варринче пĕр-пĕр чаплă вырăнта пулмалла.

Мăн Канаш пайташĕ **Геронтий Никифоров** ЧНК вĕренӳпе наука комитечĕ çĕр-шыври мĕн пур чăваш ачисем хушшинче «Çĕнĕ ятсем уçатпăр» конкурс йĕркелени, ăна ирттерме ЧР Культура министерстви укçан пулăшнине пĕлтерчĕ. Пухăннисене çак конкурса нумай ачана хутшăнма май туса пама чĕнсе каларĕ.

ЧНК президенчĕн сумĕ, экономика комитечĕн ертӳçи **Олег Мешков** Конгресăн хăйĕн ĕçне укçаллă çынсене явăçтарма хăнăхмаллине, нухратсăр хальхи вăхăтра нимĕн те тума май çуккине палăртрĕ.

Пуху вĕçĕнче, ЧНК Президиумĕнчен тухма заявлени çырнине пула, Конгресс йышĕнчен хăш-пĕр çынсене кăларчĕç. Тĕслĕхрен, малашне унта культура министрĕ Вадим Ефимов пулмĕ. Анчах ку министерство ЧНК ĕçне пач хутшăнманнине пĕлтермест. Министр вырăнне ЧНК йышне заявлени çырса тепĕр çын кĕчĕ – Культура министерствин пай пуçлăхĕ Сергей Казаков.

*2.02.2015.*
*«Хыпар»,*

## КОНГРЕСШĂН САВĂНАТĂП

*Иртнĕ шăмат кун ЧР Наци библиотекинче Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн черетлĕ ларăвĕнче пулма тиврĕ.*

Аптриш вăл Конгреспа! Иртнĕ ĕмĕрĕн тăхăр вуннăмĕш çулĕсен пуçламăшĕнче пĕтĕм чăваш халăхĕ пĕр кăмăллă пулса, Чăваш Ен ертӳçисемпе пĕр чĕлхе тупса пысăк шанчăкпа йĕркеленĕскер, малтанах нал Чăваш наци юхăмĕн, чĕрĕлĕвĕн хăйсене евĕрлĕ «Смольнăйĕ» пулса тăчĕ. Ĕç вĕресе кăна тăратчĕ çав «Смольнăйра!» Урнă тинĕсре ишекен «Раççей» ятлă вышкайсăр пысăк карап хумсемпе кĕрешет, вăл ăçталла ишни, малта ăна мĕн кĕтни никамшĕн та паллă мар! Пĕрисем Совет Союзĕ арканчĕ пулсан Раççей те арканатех теççĕ, çак «историллĕ процеса» васкатма тăрăшаççĕ. Хусанта лăпкă мар, Ĕпхӳре лăпкă мар, Чечняпа Кавказри ытти республикăсем пирки калама та кирлĕ мар?

Чăваш Енре кăшт маларах ЧАП (Чăваш аталанăвĕн партийĕ), Хресченсен пĕрлĕхĕ йĕркеленнĕччĕ? Хăйне хăй Моисей вырăнне кайса хунă М. Юхма ЧОКЦ туса хучĕ, «чăваш халăхне сутă пуласлăх енне ертсе кайма эп çеç тивĕçлĕ, манран аслă чăваш тĕнче уçлăхĕнче çук, пулма та пултараймасть!» тесе пĕлтерчĕ çавскер пĕтĕм тĕнче илтмелле. Юхма пекки çут тĕнчере чăнах та урăх çук. Чăваш Енĕн Аслă Канашĕпе правительстви çак ансат мар лару-тăрура темĕскер тăвасшăн, анчах та мĕн тумаллине пĕлмеççĕ.

Ак, питĕ кĕскен, еплерех лару-тăрура çуралчĕ Чăваш наци конгресĕ. Еплерех сумлă та хаваслă иртрĕ унăн пĕрремĕш Аслă пухăвĕ! Мĕн тери савăннăччĕ-хавхаланнăччĕ Кăйкăрăмăр Андриян, мĕн тери телейлĕччĕ Шупашкара аякран, çав шутра Америкăран та, килсе çитнĕ сумлă хăнасем!

Икĕ кун ĕçлерĕ-кĕрлерĕ-шавларĕ ун чухне Чăваш наци конгресĕн 1-мĕш Аслă пухăвĕ! Чи пахи – вăл пĕтĕм чăваш халăхне, кашни уйрăм чăваша нумайранпа хумхантаракан çивĕч ыйтусене хускатса сӳтсе яврĕ, вĕсене еплерех татса памаллине палăртрĕ.

Кайран, Аслă пуху вĕçленнĕçемĕн, делегатсемпе хăнасем пурте пĕрле филармони умĕнче сан ӳкерчĕк ӳкерĕнме хатĕрленнĕ чухне, манпа пĕр вăхăтра университетра вĕреннĕ Борис Гордон мана çапла каларĕ: «Туркай, эп нумаях пулмасть тутарсен Хусанта иртнĕ çакнашкал форумĕнче пултăм. Аллăма чĕрем çине хурса калатăп: сирĕн, чăвашсен, 1-мĕш Аслă пухăвăр кӳршĕсеннинчен ик-виç хут чаплăрах иртрĕ!..»

...Çапла – пулнă вăхăтсем!.. Пулнă, пулман мар.

Кайран – çакнă пурсăмăр та ас тăватпăр – ЧНКра пĕр хушă «А. Хусанкай самани» пулса илчĕ, унтан вара «Г. Архипов, В. Иванов, А. Кибеч, К. Портнов, В. Абрамов (тăпри çăмăл пултăр) самани»... пуçланчĕ. Пуçланчĕ те, ай-яй, ытла та нумая тăсăлса кайрĕ çав самана. Конгресс ерипен ятне-сумне çухатса пычĕ, унта хăйсене хисеплекен пултаруллă чăвашсем çӳреме пăрахрĕç, ЧНК вăхăт-вăхăтпа иртterекен «аслă» пухусенче Владимир Ивановпа Кибеч хуçаланма пуçларĕç, аякран килнĕ делегатсем пĕр-пĕринпе ăмăртнăн ЧНК пуçлăхне мухтарĕç, тав турĕç. Тĕрлĕ кăмăл-туйăмлă, тĕрлĕ тĕнче курăмлă чăвашсене пĕр йыша пухса вĕсенчен сумлă та хăватлă Пĕрлĕх тăвас вырăнне Конгресс ертӳçисем çав чăвашсене, тĕрлĕ меслетсемпе усă курса, «пирĕннисемпе» «пирĕн маррисем» çине пайлама пикенчĕç.

Тав Турра, «Архиповсен–Кибечсен–Ивановсен самани» ЧНКра 2013 çулхи хĕвеллĕ кĕркунне вĕçленчĕ. Шăп çавăн чухне Конгреса пĕтĕм Чăваш Тĕнчи пĕлекен, хисеплекен Николай Угаслов ертсе пыма пуçларĕ. Çакăн хыççăн, тӳрех мар пулсан та, ЧНК ĕçĕ-хĕлĕнче, пурнăçĕнче ырă улшăнусем пуçланчĕç. Ку улшăнусене текех никам та тытса чараймĕ, ура хураймĕ.

Шăпах çакна çирĕплетрĕ те, ман шутпа, Конгресс Мăн Канашĕн иртнĕ эрне кун Шупашкарта, Наци библиотекинче, пулса иртнĕ черетлĕ ларăвĕ. Унăн кун йĕркийĕ çакнашкал пулчĕ: «Чăваш наци конгресĕ» регионсен хушшинчи общество организацийĕ 2014 çулта туса иртternĕ ĕçсем çинчен пĕлтерни тата Чăваш наци конгресĕн 2015 çулĕн ĕç планĕн проектне сӳтсе явса çирĕплетесси çинчен». Доклад тăваканĕ, паллах, ЧНК президенчĕ Н.Ф. Угаслов.

Иртнĕ шăмат кун Наци библиотекинче кам мĕнлерех калаçни пирки тĕплĕн каласа парас тĕллев тытман эп хальхинче. Тĕллевĕм манăн урăхларах – манăн Чăваш наци конгресĕн черетлĕ форумĕ еплерех иртнипе хам питĕ кăмăллă пулнине уççăн пĕлтерес килет. Н.Ф. Угаслов ЧНК ку тарана çитиччен мĕн-мĕн туни пирки еплерех каласа пани те, вăл кăçал тумалли ĕçсен планĕ çинчен еплерех калани те мана питĕ килĕшрĕ. Пĕтĕмпех – тĕплĕ, татăклă, ĕненмелле. «Эп» те «эп» тесе кăкăр çапни пачах та пулмарĕ.

Доклада сӳтсе явакансем те пĕринчен тепри маттур, пĕринчен тепри ĕçлĕ пулчĕç. Никам та никама та «тăрă шыв çине кăлармарĕ», «эс патриот пулса çитмен-ха, эп çеç – чăн-чăн патриот!» темерĕ. Çав вăхăтрах мĕн тери паха сĕнӳсем пачĕç ларура тухса калаçнă çынсем! Çав паха сĕнӳсене секретариат пурне те шута плсе пычĕ. «Акă еплерех пулмалла унăн – Чăваш наци конгресĕн, ак еплерех иртмелле унăн «аслă» е «аслă мар» пухăвĕсем!» – çакăн пек шухăш çиçсе илчĕ тахăш самантра манăн пуçăмра.

Ĕçлемелли вара пирĕн кăçал пайтах – Литература çулталăкне те, К.В. Иванов çулталăкне те май пур тарăн тухăçлă иртtermелле. Ытти пысăк ĕçсем те – «мăй таран».

Ларура сăмах калама ятăм тухсан эп, ытти-хыттисĕр пуçне, çапла каларăм: «Халь Николай Федорович Угаслова пулăшни –– Чăваш наци конгресне пулăшни, Чăваш наци конгресне пулăшни – тăван чăваш халăхне пулăшни».

Ман шутпа, паян çакăн пек эпĕ çеç шухăшламастăп. Çакăн пек паян пиншер чăваш шухăшлать.

Валери ТУРКАЙ.
*«Хыпар», 4.02.2015, 18№.*

## ПАРХАТАРЛĂ ĔÇĔСЕМ ХАЛĂХĂМĂР ВАЛЛИ ЮЛЧĔÇ

*Ĕнер чăваш тĕнчишĕи хурлăхлă самант пулнă: 1997–2013 çулсенче Чăваш наци конгресне ертсе пынă Геннадий Архиповпа яланлăхах уйрăлтăмăр.*

Геннадий Николаевич сакăр çул (1984–1992) чăваш халăх хаçатĕнче ĕçлерĕ, ял çыннисен пурнăçĕ, ыратăвĕ, кулянăвĕ ăна та канăççăрлантарнă. Статйисемпе очеркĕсенче, тĕрленчĕкĕсемпе репортажĕсенче вулакана кăсăклантаракан ыйтусене хускатнă.

Пурнăç, ĕç опычĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашăн депутатне суйлансан, парламентра унăн Культура, вĕрентӳ, ăслăлăх тата пичет комитетне ертсе пынă çулсенче тата пуянланчĕ. Çакна шута илсех ĕнтĕ Геннадий Николаевича Чăваш наци конгресĕн президентне суйларĕç.

Вун ултӑ ҫул хушшинче тӑван халӑх чӗрӗлӗвӗшӗн чунне парса ӗҫлерӗ. Тем те пулнӑ: ҫитӗнӳсем те, вӑхӑтлӑх чӑрмавсем те... Пур-пӗрех ырри – ытларах. Чӑваш наци конгресӗн хальхи ҫуртне тӗпрен юсани хӑй мӗне тӑрать. Тӑван халӑха нимене хутшӑнтарма пултарчӗ. Шупашкарти шкулсенче чӑваш чӗлхин урокӗсене чакарассине хирӗҫ ҫивӗч кӗрешрӗ. Халӗ тӗп хулари шкулсенчи Чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекенсен ассоциацийӗ ҫак ыйтӑва куҫран вӗҫертмест.

Республика тулашӗнчи йӑхташсемпе ӗҫлени пирки вара пӗр кӗнеке кӑна та мар ҫырма пулать. Иртнӗ ӗмӗр вӗҫӗнче регионсенче чӑваш культура центрӗсен шутне палӑртма икӗ алӑри пӳрнесем те ҫитетчӗҫ, халӗ вӗсем 90-ран иртнӗ. Конгреса ертсе пынӑ тапхӑрта пурнӑҫӗн ҫуррине ҫӗр-шывӑмӑрӑн вун-вун кӗтесӗнче тӗпленсе пурӑнакан ентешӗмӗрсем патӗнче – вӗсен шӑпине ҫӑмӑллатас, тӑван культурӑпа йӑла-йӗркене сыхласа хаварса малалла аталанма пулӑшас ыйтусене татса парас тӗлӗшпе – ирттерчӗ пулӗ. Шупашкарта патшалӑх шайӗнче Пӗтӗм чӑвашсен Акатуйне паллӑ тума пуҫличчен ЧНК пуҫарӑвӗпе ӑна виҫӗ-тӑватӑ хут йӗркелеме пултарчӗҫ. Паллах, Геннадий Николаевич ҫине тӑнипе.

Ҫаксене тата ытти нумай ӗҫне ырӑпа аса илчӗҫ Геннадий Архипова юлашки ҫула ӑсатма пуҫтарӑннисем. Чӑваш наци конгресӗн президенчӗ **Николай Угаслов**, ЧНКн пӗрремӗш президенчӗ пулнӑ **Атнер Хусанкай**, ЧР вӗрентӳ министрӗ **Владимир Иванов,** ЧР Патшалӑх Канашӗн комитет председателе **Петр Краснов**, ЧНК ҫумӗнчи Ваттисен Канашне чылай вӑхӑт ертсе пынӑ **Анатолий Кибеч**, ЧНК вице-президенчӗ пулнӑ **Владимир Иванов**, ЧНК вице-президенчӗ **Алексей Леонтьев**, Чӗмпӗр облаҫӗнчи чӑваш наци культура автономийӗн председателӗ **Владимир Сваев**, Самар хутлӑхӗнчи чӑваш хастарӗ **Николай Давыдов** Геннадий Николаевич ӗҫне пысӑка хурса хакларӗҫ, сутӑ сӑнарне асра тытасса палӑртрӗҫ. Мухтавлӑ ӗҫтешӗмӗр яланлӑхах кайрӗ пулсан та пархатарлӑ ӗҫӗсем халӑхӑмӑр валли юлчӗҫ.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 6.02.2015, I9–20№.*

## ЧНК ПРЕЗИДЕНЧӖН ПӖРРЕМӖШ ҪУМӖ КРЫМРИ ЙӐХТАШӐМӐРСЕМПЕ КУРНӐҪНӐ

Чӑваш наци конгресӗн президенчӗн пӗрремӗш ҫумӗ **В.Л. Клементьев** ЧР Пуҫлӑхӗ ертсе пынӑ делегаци шутӗнче Крыма кайса килнине эпир сайтра ҫырнӑччӗ. Унӑн тӗп тӗллевӗ – Крым Республикинчи йӑхташӑмӑрсемпе ҫывӑхрах паллашасси. Раҫҫейпе ҫӗнӗрен пӗрлешнӗренпе кунта чӑваш наци культура автономине туса хурасси тата та ҫивӗчленчӗ. Севастополь хулинче пирӗн йӑхташӑмӑрсем автономи пӗрлешӗвӗ туса хунӑ-ха, анчах Крым Республикинче пур чӑваш автономийӗсене пӗрлештерсе тӑракан организаци ҫук. Симферопольте Валерий Леонидович Крымра пурӑнакан пирӗн ентешсемпе тӗл пулнӑ.

Калаҫу кӑҫал кунта чӑваш наци культура автономийӗ йӗркелесе ярасси пирки пынӑ. Крым чӑвашӗсем тӑван чӗлхесӗр, тӑван культурӑсӑр тунсӑхланине пӗлтернӗ. Апла пулсан пӗрле пуҫтарӑнасси, чӑвашла тӗрлӗ мероприяти ирттерессi вӗсене хӑйсене кирлӗ. Валерий Клементьев ҫул ҫӳрев ӑнӑҫлӑ иртнине, унти чӑвашсем хастар та пултарулла пулнине, тӑван Шупашкара ҫитес вӑхӑтра хӑнана килес кӑмӑллине хыпарларӗ.

Зоя ЯКОВЛЕВА, ЧНК пресс-службин ертӳҫи.
*3.03.2015.*

## ТӐВАЙСЕМ ЧНК ӖҪ-ХӖЛӖПЕ ПАЛЛАШМА ШУПАШКАРА КИЛЧӖҪ

*Культура ӗҫченӗсен кунӗ ЧНКн Тӑвайри уйрӑмӗн пайташӗсемшӗн усӑллӑ иртрӗ. Вӗсем Конгреса ҫуртӗнче Конгресс президенчӗн ҫумӗсемпе* ***Валерий Клементьевпа, Петр Ивантаевпа, Алексей Леонтьевпа****, «Чӑваш ялӗ» комитет ертӳҫипе* ***Эдуард Бахмисовпа*** *тӗл пулчӗҫ.*

**В. Клементьев** Тӑвайсене хастар пулнишӗн тав турӗ, кӗскен ЧНК ӗҫ-хӗлӗпе паллаштарчӗ, ҫитес вӑхӑтра Крымри Симферополь хулинче тата Белгородра чӑваш наци автономийӗсем уҫасси пирки каласа пачӗ. **Петр Ивантаев** вырӑнти уйрӑмсенче пысӑк шанӑҫ пулнине, ӗҫе тӗплӗн тӑвас тесен чи малтан районсенчи уйрӑмсемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлемеллине каларӗ. Конгресӑн информаци комитечӗн ертӳҫине **Алексей Леонтьева** вара тӑван чӗлхене ҫителӗклӗ тимлӗх уйӑрманни пӑшӑрхантарать иккен. Халӗ ялсенче те ачасемпе вырӑсла калаҫма тӑрӑшни, тӗрлӗ мероприятие чӑвашла ирттерме пӑрахни тӑван чӗлхене пӑрахӑҫлас патне илсе ҫитерме пултарассине пӗлтерчӗ вӑл, ЧНК вырӑнти уйрӑмне ҫак енӗпе уйрӑмах тимлӗ ӗҫлеме сӗнчӗ.

Конгресӑн Тӑвай районӗн уйрӑмӗн ертӳҫи **Анатолий Кириллов** вырӑнта мӗнле ӗҫсем ирттернине уҫӑмлатрӗ, еплерех йывӑрлӑхсем сиксе тухнине каларӗ.

ЧНК пресс-служби.
*26.03.2015.*

## ВАЛЕРИЙ КЛЕМЕНТЬЕВ ЫР КӐМӐЛЛӐХ КОНЦЕРЧӖ ЙӖРКЕЛЕРӖ

*Юнлӑ вӑрҫӑ каймасть асӑмран ӗмӗрне...*
*Вӑл хӑварчӗ суран кашни ҫын чӗрине.*
*Эсир йӗрсӗр пачах ҫӗр ҫинчен ҫухалман,*
*Никама та манман, нимӗн те манӑҫман. . .*

Ҫак сӑмахсемпе пуҫларӗ хӑйӗн концертне ЧНК президенчӗн пӗрремӗш ҫумӗ, Чӑваш Республикин культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ Валерий Клементьев. Ака уйӑхӗн 2-мӗшӗсенче Трактор тӑвакансен культура керменне концерта пуҫтарӑннӑ кашни ҫын (кунта нумайрах Етӗрне районӗнчен килнӗ) Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫи чарӑннӑранпа 70 ҫул ҫинине чыслӑн кӗтсе илме хатӗрленме хутшӑнчӗ теме пулать. Ваттисем каланӑ пек – пӗр тумлам шыв та тинӗсе пулӑш. Валерий Леонидович пуҫарнипе Етӗрне районӗнчи Пупӑлькассинче вӑрҫӑра вилнисене асӑнса питӗ сумлӑ асӑну стели-часавай тӑвасшӑн. Концерта ирттерсе пухнӑ укҫана Валерий Клементьев йӑлтах ҫак ӗҫе ярасшӑн.

Чӑваш наци конгресӗн президенчӗ Николай Угаслов пархатарлӑ ӗҫе ырларӗ кӑна мар, хӑй енчен питӗ пысӑк пулӑшу пачӗ. Вӑл парнеленӗ сертификатпа «Кетра» кирпӗч завочӗ стела тума пилӗк пин кирпӗч укҫасӑр уйӑрать.

Ыр кӑмӑллӑх концертӗнче ырӑ ҫынсем татах та пулчӗҫ. Етӗрне район Пухӑвӗн депутачӗ Петр Столяров асӑну стелине хӑпартнӑ чух усӑ курма техника уйӑрасси ҫинчен Валерий Клементьева сертификат тыттарчӗ. Шупашкар хула Пухӑвӗн депутачӗ Виктор Горбунов укҫа пачӗ.

«Пӗр ҫын сурать – типсе ларать, ҫӗр ҫын сурать – кӳлӗ пулать», – тенӗ пек пулчӗ ку концертра. Валерий Леонидовичпа пӗрле унӑн эстрадӑри ӗҫтешӗсем – ЧНК ҫумӗнчи «Янра, юрӑ», «Самана» вокал ушкӑнӗсем, «Дюймовочка» ташӑ ушкӑнӗ, Сергей Павлов, Алексей Московский, Любовь Афанасьева, Фарида тата ыттисем те юрласа халӑха савӑнтарчӗҫ.

ЧНК пресс-служби.
*3.04.2015.*

## ВАТТИСЕН КАНАШӖ ТӖРӖСЛЕВЕ ТУХРӖ

*Ҫу уйӑхӗн 21-мӗшӗсенче Чӑваш наци конгресӗн Ваттисен Канашӗпе Шупашкар хула Пухӑвӗн Ваттисен Канашӗ тӗп хула урамӗсем тӑрӑх тӗрӗслев ирттерчӗҫ. Вӗсемпе пӗрле хула хуҫалӑхӗшӗн яваплӑ ҫынсем, журналистсем ҫула тухрӗҫ. Ирхине вунӑ сехетре автобуспа ятарлӑ маршрутпа Шупашкар урамӗсене, паркемпе чарӑнусене ҫитсе килчӗҫ вӗсем.*

Мӗн кӑсӑклантарчӗ-ха ҫула тухнисене? Часах Шупашкар хулин сумлӑ юбилейне паллӑ тӑвӑпӑр. Ҫулла Республика кунне, Акатуя тата тӗнче шайӗнчи спорт ӑмӑртӑвне сумлӑ хӑнасем килмелле. Тӗп хуламӑра чи таса та хӑтлӑ тесе шутлатпӑр пулин те–пурнӑҫ курнӑ ҫынсен куҫне ҫитменлӗхсем те курӑнаҫҫӗ иккен.

ЧНК Ваттисен Канашӗн председателӗ Василий Яковлевич Шадриков тӗрӗслеве тухнисене малтанах Афанасьев урамӗнчи чарӑнӑва илсе ҫитерчӗ.

Кунта çуран çӳрекен çулсене тирпей-илем кӳменни курӑнать, студентсем кашни кун иртекен вырӑнсенче литература çулталӑкне палӑртакан баннерсем çук. Кӑшт шаларах кӗрсен вара уçӑ туберкулез чирӗнчен сипленекен диспансер. Анчах та ӑна нимӗнле картапа та уйӑрман... Сывӑ çынсем, уйрӑмах юнашар вӗренекен студентсем ку вырӑнтан иртсе çӳреççӗ. Çакӑ вӗсен сывлӑхӗшӗн хӑрушлӑх кӑларса тӑратать.

Малалла маршрут – «Шупашкар: 500 çул» паркалла. ЧНК Ваттисен Канашӗн председателӗн çумне, паллӑ скульптора Федор Иванович Мадурова парк шӑпи питӗ пӑшӑрхантарать. Çак пысӑк лаптӑка 40 çул ӗнтӗ йӗркене кӗртейменнӗ. Наци этнопаркӗ тӑвас шухӑшпа пуçарнӑ ӗçсем ниепле те малалла каймаççӗ. Халӗ те чӑваш наци сӗмӗ туйӑнмасть кунта. Пырса кӗнӗ çӗрте кивелсе кайнӑ палӑк ларать. Вӑл, малтан Етӗрне енчен хулана пырса кӗрекен çавра çул варринче пулнӑскер, никама кирлӗ мар пек туйӑнать. Ӑна юсаса çӗнетмелли, парка наци сӗмӗ кӗртмелли пирки хулашӑн яваплӑ тӳре-шарана сӗнӳсем нумай пачӗç ватӑсем .

Гузовский вӑрманне те çитсе килчӗ хула тӑрӑх тӗллевлӗ çул çӳреве тухнӑ ушкӑн. ЧНК Ваттисен Канашӗн пайташӗ Ираида Стекольщикова ку парк евӗр вӑрманта хула халӑхӗ канма юратнине, анчах та тасамарлӑх пӑшӑрхантарнине каларӗ. Чӑнах та, йӗри-тавра – хӑрнӑ йывӑççем, çӳп-çап. Кунта волонтерсене явӑçтарса тирпей-илем кӗртсен аван пуласси не асӑрхаттарчӗç «шур сухалсем».

ЧНК Ваттисен Канашӗн пайташӗсене хулара чӑвашла шӑрçаланӑ вырӑнсем питӗ сахал пулни, ун вырӑнне ют чӗлхепе çырнӑ лавкка ячӗсем йышлӑланни те кулянтарать. Кӑçал республикӑмӑрта К.В. Иванов çулталӑкӗ пулнине палӑртакан вырӑнсем çукпа пӗреххи пӑшӑрхантарнине те пӗлтерчӗç.

Урам ячӗсене уçӑмлӑрах пamallине те каларӗç. Сӑмахран, Лебедев ячӗллӗ урам пачах Герман Лебедев композитор ячӗпе мар иккен, паллӑ çар çыннине асӑнса панӑ ӑна....тата ытти те.

Хулана пырса кӗрекен вырӑнсене, уйрӑмах Канаш енчен кӗрекен çула, капӑрлатмаллине, пирӗн хуламӑр ят-шывне мӑнаçлатмалли ӳкерчӗксемпе çырса хунисем пулсан аваннине те палӑртрӗç.

Хула Пухӑвӗн депутачӗсемпе тӳре-шара ЧНК Ваттисен Канашне çапла тимлӗ пулнишӗн, тӑван хуламӑрӑн малашлӑхӗшӗн пӑшӑрханнишӗн тав турӗç, ӳлӗм те те пӗрле ӗçлеме калаçса татӑлчӗç.

Зоя ЯКОВЛЕВА, ЧНК пресс-служби ертӳçи.
*22.05.2015.*

## ШУПАШКАР РАЙОНӖ АКАТУЙРА САВӐНЧӖ

*Уяв кӗрлесе кӑна тӑчӗ. Фольклор коллективӗсем хайсен пултарулӑхӗпе савӑнтарчӗç, ял тӑрӑхӗсем тӗрлӗ куравсем йӗркелерӗç, чӑваш апат–çимӗçӗпе хӑнасене тараватлӑн сӑйларӗç.*

Кунтах волейбол, шашка, армспорт, чӑваш кӗрешӗвӗ ӑмӑртӑвӗсем кӑсӑклӑ та хӗрӳ иртрӗç.

Йӑлана кӗнӗ Акатуй уявне Шупашкар районӗсем кӑçал ытти çулхипе танлаштарсан тата та анлӑрах хатӗрленнӗ. Чӑваш наци конгресӗн «Чӑваш ялӗ» комитет ертӳçи Эдуард Бахмисов проекчӗпе Станьял çумӗнче тӗлӗнмелле чаплӑ ӗлӗкхи хула-керем ӑсталанӑ. Ӑна тума хӑйӗн укçи-тенкине Атӑльял çынни Сергей Сорокин хунӑ. Пӗрремӗш юпана çу уйӑхӗн 17-мӗшӗсенче Эдуард Бахмисов хӑй лартнӑ та унтанпа Вӑрман-Çӗктер ял администрацийӗ тӑрӑшнипе ку тӑрахри ял çыннисем хӑтлӑ та илемлӗ чӑваш «Кремлӗ» туса хунӑ. Кунтах чӑвашсен историйӗ, йӑли-йӗрки çинчен каласа паракан панносем, ӗç хатӗрӗсем тата ытти те.

Крепоç варринчи лапамра – пысӑк çавра сцена. Юнашар тапса тӑракан çӑлкуçа çӗнӗ пура ярса ӑсталанӑ, йӗри-тавра илем кӳрсе хӑтлӑлатнӑ.

Акатуя Шупашкартан официаллӑ делегаци килсе çитрӗ: ЧР Элтеперӗн ӗçӗсене пурнӑçласа пыракан Михаил Игнатьев, ЧНК президенчӗ Николай Угаслов, ЧНК активӗ.

Кӑçалхи уява Шупашкар районӗсем Литература çулталӑкне тата Тӑван çӗр-шывӑн Аслӑ вӑрçи пӗтнӗренпе 70 çул çитнине халаллanӑ.

«Атӑл çинчи ялӑн вӑйӑ карти» ятпа ирттернӗ вӑййа Михаил Игнатьевпа пӗрле Чӑваш наци конгресӗн президенчӗ Николай Угаслов та тӑчӗ. Вӑл Вӑрман-Çӗктер ял администрацийӗн пуçлӑхне Николай Хорасева тата паллӑ ӑсчаха Виталий Станьяла парнесемпе чысларӗ.

ЧНК пресс-служби.
*13.06.2015.*

## ФИНСЕМ ЧӐВАШ ЙӐЛИ-ЙӖРКИПЕ КӐСӐКЛАНАÇÇӖ

*Йӑлӑмра вырнаçнӑ «Чувашия» санаторин асамлӑ вырӑнӗсенче вырсарни кун, авӑн уйӑхӗн 13-мӗшӗнче, финн киноактерӗ Вилли Хаапасало ертсе пыракан пултарулӑх ушкӑнӗ чӳклеме туни çинчен документлӑ фильм сыпӑкӗсене ӳкерчӗ. Ку ӗç-пуçа йӗркелекенни – ЧНК Ваттисен Канашӗн пуçлӑхӗн çумӗ, паллӑ скульптор тата тавра пӗлӳçӗ Федор Иванович Мадуров.*

Авалхи йӑла-йӗркене **Федор Мадуров** чылай çул тытса пырать. Хальхинче кунта унӑн ывӑлӗ, искусствовед **Дмитрий Мадуров**, паллӑ çыравçӑ **Анатолий Кипеч**, **Николай Фомиряков** тавра пӗлӳçӗ, **Юрий Спиридонов** кинопродюсер тата ыттисем хутшӑнчӗç. Чӳклемене ирттернӗ çӗрте ЧНК президенчӗн пӗрремӗш çумӗ Валерий Клементьев тата эпӗ, ЧНК пресс-служби ертӳçи **Зоя Яковлева**, пултӑмӑр. Чӑваш кӗпине тӑхӑнса чӳк тунӑ çӗрте хутшӑнма та май килчӗ мана.

Çанталӑк янкӑр уяр та ӑшӑ тӑнине пула кинокадрсене хӑвӑрт ӳкерсе пӗтерчӗç.Вилли Хаапасало ертсе пыракан киноушкӑн малалла Йӗпреç тӑрӑхне çул тытрӗ. Унта вӗсем чӑваш сӑрине тунине ӳкерес тӗллевлӗ.

Зоя ЯКОВЛЕВА,
ЧНК пресс-служби ертӳçи.
*13.09.2015.*

## МИХАИЛ ИГНАТЬЕВПА НИКОЛАЙ УГАСЛОВӐН ӖÇЛӖ ТӖЛ ПУЛӐВӖ

*Чӑваш Республикин Пуçлӑхӗн тивӗçӗсене вӑхӑтлӑх пурнӑçлакан Михаил Игнатьев Чӑваш наци конгресӗн президенчӗпе Николай Угасловпа ӗçлӗ тӗл пулу ирттернӗ.*

Николай Угаслов хӑйӗн сӑмахӗнче пирӗн республикӑн тата регионсен наци культура пӗрлешӗвӗсем Михаил Игнатьева суйлавра мала тухнине, çӗнтерӳçӗ пулса тӑнине тивӗçлӗ тесе нимӗн иккӗленмесӗрех хакланине, Чӑваш Республикин Пуçлӑхӗ пулма должноçа Михаил Игнатьев суйланнӑшӑн ырласа тав сӑмахӗсем каланине пӗлтернӗ. «Юлашки çулсенче Чӑваш Енпе тачӑ çыхӑну тытса ӗçленине уйрӑммӑн палӑртаççӗ. Вӗсене аталанса пыма, çыхӑнӑва çирӗплетме сахал мар ӗç пурнӑçланӑ. Малашне те килӗшӗве упраса пырассине шанаççӗ», – пӗлтернӗ вӗсен шухӑшӗсене Николай Угаслов. Юлашки çулсенче ЧНК элчисемсем çӗр-шыв тӑрӑх сахал мар çӳренӗ. Авӑн уйӑхӗн 19-мӗшӗсенче Симферопольте тата Белгородра чӑваш наци культурин пӗрлӗхӗсем уçӑлӗç. Юлашки пилӗк çулта вӗсен шучӗ 81-рен 93 çитнӗ. Чӑваш Ен Правительстви наци культурин пӗрлешӗвӗсене витӗм кӳни те куç кӗретех. Чӑваш диаспорисене упраса хӑварма тата аталанса пыма сахал мар пулӑшу кӳнине палӑртнӑ Николай Угаслов.

*«Хыпар», 16.09.2015.*

## КРЫМ ЧӐВАШӖСЕМ ЧӐМӐРТАНЧӖÇ

*Пирӗн йӑхташӑмӑрсем хамӑр çӗр-шывӑн тӗрлӗ кӗтесӗнче тӗпленсе пурӑнаççӗ. Крымра та вӗсен йышӗ самаях пысӑк. Совет саманинче ӗçлемешкӗн çур утрав çине чылайӑн тухса кайнӑ вӗсем. Раççейпе пӗрлешнипе хӗпӗртенӗскерсем нумаях пулмасть Крымра наци культура автономийӗсене йӗркелерӗç. Çак ӗç ЧНК президенчӗ Н.Ф. Угаслов сӗннипе, çине тӑнипе йӗркеленчӗ. Çӗнӗ региона ЧНК президенчӗн пӗрремӗш çумӗ* ***Валерий Клементьев*** *ертсе пыракан ушкӑн çитсе килчӗ. Валерий Леонидовича унти лару-тӑрупа паллаштарма ыйтрӑмӑр.*

– Малтанах эпир Керчьри чӑвашсемпе тӗл пултӑмӑр. Унта пире ӑшшӑн йышӑнчӗç. Хулара Чӑваш наци культура автономине йӗркелеме

палăртаççĕ. Ку енĕпе чылай çул çар гарнизонĕн пуçлăхĕнче вăй хунă Мефодий Мазуркин тăрăшать. Хĕрлĕ Чутай тăрахĕнче çуралса ӳснĕ харсăр чăваш питĕ пуçаруллă. Ку тăрăхри чăвашсене чăмăртас тесе пĕтĕм вăйне-чунне парса ĕçлет вăл.

Симферопольти хула пухăвĕн çуртĕнче те пире тараватлăн кĕтсе илчĕç. Чăвашсем пухăнни – ялан уяв. Вырăнти ансамбльсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç. Чăваш юрри-кĕвви чылайччен кĕрлерĕ, тăван чĕлхе сасси янăраса тăчĕ. Савăнăçлă уяв хыççăн официаллă пай пуçланчĕ. Симферопольте Чăваш наци культура автономине туса хунине протокол çырса çирĕплетрĕç.

Унăн ертӳçи пулма хастар та пултаруллă чăваша Николай Пропынина шанчĕç. Хыççăнах Крым Республикинчи чăвашсен пĕрлĕхне те йĕркелерĕç. Ертӳçĕ пулма Андрей Яковлева суйларĕç. Вăл Симферополь хула администрацийĕнче ĕçлет, Трак ен тăрăхĕнчен тухнăскер. Уявра Ялта чăвашĕсем те чылайăнччĕ. Вĕсем те хулан автономи уйрăмне туса хучĕç. Ăна Святослав Семенов ертсе пырать. Çак ĕçсене вĕçленĕ хыççăн Крым чăвашĕсемпе пĕрле «çавра сĕтел» хушшине лартăмăр, малашне мĕн-мĕн тумаллине пăхса тухрăмăр.

Крым чăвашĕсен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк, ĕмĕт-шухăшĕ анлă. Юн вĕресе тăрать тейĕн. Çур утрав çинче пурăнакан пур чăваша та пуçтарас тĕллевлĕ вĕсем. Çывăх вăхăтра автономи сайчĕ ĕçлесе каймалла, ку вара ĕçе татах çăмăллатĕ. Юрă-ташă ансамблĕсем валли тум çĕлесе пама ыйтрĕç. Чăваш кĕнекисем сахалли те кулянтарать вĕсене, библиотека кирлĕ теççĕ. Ку енĕпе пулăшма шантартăмăр. Крым çĕрĕ çинче пуç хунă салтаксене халалласа палăк лартма шут тытнă. Ырă пуçару ку. «Кĕр сăри», «Акатуй», чăваш халăхĕн тата ытти уявне иртерме сĕнтĕмĕр. Ку таранччен унта кунашкал пысăк мероприятисем йĕркелесех кайман. Ушкăн-ушкăнăн тĕл пулса калаçнă, сайра-хутра çавра юбилейсем ирттернĕ, анчах ытти майсем пулман. Малашне «Чăваш пики», «Кĕмĕл сасă» конкурссене хутшăнакансен йышĕнче Крым çамрăкĕсене курăпăр пулĕ-ха.

Çур утрав çинче Чăваш культура центрĕ (керменĕ) уçма калаçса татăлтăмăр. Унта чăвашсене пухăнма, пĕр-пĕринпе курса калаçма май пултăр. Музей йĕркелес шухăш та пур. Чăваш Енрен пыракансене питĕ кăмăллăн кĕтсе илеççĕ вĕсем, уйрăмах артистсене хапăл. Чăваш эстрада юрăçисене антăхса кайса пăхса тăраççĕ, юрри-кĕввипе киленеççĕ. Паллах, вĕсен те тăван чĕлхепе калаçас килет, чăваш юррисене итлес килет. Çавăнпах культура автономийĕсем йĕркелени питĕ пĕлтерĕшлĕ. Сăмах май, пирĕн артистсемпе юрăçсем тĕрлĕ регионти чăвашсем патне кайсах çӳреççĕ. Ку хутĕнче вара Крым чăвашĕсене Вячеслав Александров, Ирина Музыкантова тата Аня Элпике чаплă концертпа савăнтарчĕç.

Пирĕн республикăри районсемпе Крымри хуласем туслă çыхăну тытнине палăртса хăвармалла. Тĕслĕхрен, Канаш районĕ Балаклава хулипе юлташлă. Сăмах май, çак кунсенче район делегацийĕ унта çула тухать. Патăрьелсем Бахчисарайпа ĕçлĕ çыхăну йĕркеленĕ. ЮТВ телеканал та лайăх ĕç тăвать: Крым чăвашĕсем çинчен ятарлă фильм ӳкерет.

Крым чăвашĕсемпе туслă çыхăну çулталăк пуçламăшĕнчех йĕркеленĕ эпир. Февраль уйăхĕнче республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Крымра ĕçлĕ çул çӳревпе пулнă хыççăн çак ĕç вăйланчĕ. Ун чухне çур утрав çинчи чăвашсем Крым Республикин Пуçлăхĕпе Сергей Аксеновпа автономи йĕркелеме калаçса татăлчĕç. ЧНК президенчĕ Николай Угаслов та пил пачĕ. Вăл нумай пулăшать, хавхалантарса пырать. Крымра та маттур ертӳçĕсем пурри савăнтарать. Вĕсен хушшинче чăвашсем те пур. Тĕслĕхрен, Севастопольти сунар надзорне чăваш ертсе пынă. Следстви комитетĕнче те пур пирĕн йăхташсем.

Чăваш культура обществисем Украинăра та пур. Киев хулинче чăмăртаннă чăвашсем. Наци культура автономийĕн тĕп центрĕ унта вырнаçнă (ертӳçи – Н. Лисовая). Пирĕн мухтавлă ентешĕмĕр, вĕри юнлă сăвăçăмăр Çеçпĕл Мишши Украинăри Чернигов облаçĕнчи Остер хулинче канлĕх тупнă-çке. Çавăнпа тахçантанпах çыхăну тытатпăр, анчах юлашки вăхăтра пирĕн хутшăнусем йывăрланчĕç. Хамăрăн та вĕсене йывăр лару-тăрăва кĕртсе ӳкерес килмест.

Юлашкинчен çакна калас килет. ЧНК пулăшнипе йĕркеленнĕ автономисен шучĕ 100 яхăн паянхи кун. Икĕ çул каялла Украина тытăмĕнчен тухса Раççее каялла таврăннă Крым Республикинче халĕ (Севастополь хулинчи чăвашсен темиçе çул каяллах йĕркеленнĕ пĕрлĕхне те шутласан) чăваш автономийĕ пурĕ тăваттă. Çакă чăваш тĕнчи анлăланса та сарăлса пынине кăтартать, тăван чĕлхепе культурăсăр тунсăхланă чăвашсене туслăн ĕçлеме, савăнма май парать. Вĕсен йышĕ çултан çул ӳсессе шанас килет.

Андрей МИХАЙЛОВ калаçнă.
*«Чăваш тĕнчи», 2015, юпа, 22. 6№.*

## КОНСТИТУЦИЕ ТАТА СУВЕРЕНИТЕТ ДЕКЛАРАЦИНЕ ЙЫШĂННИН ÇАВРА ÇУЛĔСЕМ ÇИТНИНЕ ХАЛАЛЛАНĂ ЛАРУ

*Раштавăн 8-мĕшĕсенче Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче Чăваш Республикин патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан Декларацие йышăннăранпа 25 çул, Чăваш Республикин Конституцине йышăннăранпа 15 çул çитнĕ ятпа «çавра сĕтел» иртрĕ.*

Ăна гуманитари институчĕ йĕркелерĕ. Модераторĕ – ЧПГĂИ ăслăлăх сотрудникĕ, ЧНК вице-президенчĕ **Алексей Леонтьев**.

Мĕн вăл суверенитет? Мĕн тума кирлĕ? Малашне мĕн тумалла? Çак ыйтусем йĕри-тавра пулчĕ ларури калаçу.

Чăваш наци конгресĕн президенчĕ **Николай Угаслов** пухăннисене паллă кунпа саламларĕ, Конституцие тата патшалăх суверенитечĕ çинчен калакан Декларацине йышăннин пĕлтерĕшне кĕскен уçăмлатрĕ.

Ун хыççăн анлă докладпа ЧНК Президиумĕн пайташĕ, паллă юрист **Николай Лукианов** тухса калаçрĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче пулса иртнĕ пулăмсене пĕтĕмлетсе Николай Егорович çакна палăртрĕ:

– Раççей территорийĕнче тем тĕрлĕ халăх та пурăннине, вĕсен кашнин хăйсене майлă истори, йăла-йĕрке пуррине пĕлсе, вĕсене хисеплесе, аталантарса пымалла. Пирĕн, чăвашсен, çирĕммĕш ĕмĕрте хамăр тăван патшалăхăмăра йĕркелесе янăскерсен, çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте те ăна упрамалла, аталантарса хăватлантармалла.

ЧНК хисеплĕ президенчĕ, паллă ăсчах **Атнер Хусанкай** чăваш халăх аталанăвĕн тапхăрĕсемпе кĕскен паллаштарчĕ. Унăн тĕп шухăшĕсем: кашни халăх хăйĕн аталану çулне хăй суйласа илет, хăй аталантарать; чăваш ятне çĕклес тесен бюджет, экономика тĕлĕшĕнчен çĕкленмелле.

– Çак паллă пулăмсен пĕлтерĕшĕ – эпир хамăр чĕлхепе калаçма пултарни, хаçат-журнал пичетленни, Конституци пулăшнипе пулса пыракан ырă ытти пулăмсем,– пулчĕ **Анатолий Кибеч** шухăшĕ.

– Эпир тĕнчене хамăр культурăпа тата йăла-йĕркепе кăсăклă. Çавăнпа та пирĕн хамăрăн культурăна сыхласа хăвармалла,– терĕ паллă ăсчах **Виталий Станьял**.

«Çавра сĕтеле» пĕтĕмлетнĕ май ЧНК президенчĕ Николай Угаслов чăваш чĕлхине, культурине, халăх пурнăçне аталантарассишĕн хирĕçӳсĕр, туслăн, пĕрле ĕçлеме чĕнсе каларĕ.

ЧНК пресс-службы.
*8.12.2015.*

## ÇИТЕС ÇУЛ ВАЛЛИ – АНЛĂ ПЛАН

*Президиумăн кăçалхи юлашки ларăвне ЧНК президенчĕ **Николай Угаслов** йĕркелесе пычĕ. Малтанах вăл Конгресс пайташĕсене Петр Ивантаевпа Эдуард Бахмисова çуралнă кунĕсемпе саламларĕ, çирĕп сывлăх, телей те ăнăçу сунса яваплă ĕçсемшĕн тав турĕ.*

Ларури тĕп ыйту – 2016 çулхи ĕç планне сӳтсе явасси. Вĕренӳпе

ӑслӑлӑх комитечӗн председателӗ **Геронтий Никифоров** проекта кӗртнӗ республикӑри ача сачӗсенче иртерме палӑртнӑ конкурса хальлӗхе пурнӑҫлама май ҫуккипе пӑрахӑҫлама ыйтрӗ. Унӑн сӗнӗвне шута илсе «Чи лайӑх чӑваш шкулӗ» ӑмӑрту ирттерме палӑртрӗҫ. ЧНК президенчӗн ҫумӗ **Алексей Леонтьев** чӑваш чӗлхипе ҫыхӑннӑ ҫавра сӗтелсем иртерсен аваннине каларӗ. Культура министерствин пай пуҫлӑхӗ Сергей Казаков ҫитес ҫулхи ҫу уйӑхӗнче чӑваш поэзийӗн кунне ирттерме сӗнчӗ.

Ларура Конгресӗн Тав ҫырӑвне ҫирӗплетрӗҫ, Хисеп хучӗсем пама ятарлӑ комисси туса хучӗҫ.

ЧНК пресс-службы.
*24.12.2015.*

## ЗАЯВЛЕНИЕ ЧНК ПО ОТНОШЕНИЮ К ВНЕШНЕПОЛИТИЧЕСКОМУ КУРСУ В.В.ПУТИНА

Межрегиональная общественная организация «Чувашский национальный Конгресс», принимая во внимание сложившуюся ситуацию на международной арене, заявляет о поддержке внешнеполитического курса Президента Российской Федерации Владимира Владимировича Путина по отношению к правительству Турции. В связи с этим ЧНК прекращает всякое сотрудничество с официальными властями Турции, а также общественными и иными некоммерческими организациями, связанными с ними.

Наше заявление к акции, санкционированной нынешним турецким руководством, никоим образом не распространяется на наше отношение ко всему турецкому народу. Мы искренне верим, что народы России и Турции пройдут все испытания и не потеряют общественной и культурной близости.

ПРЕЗИДИУМ ЧУВАШСКОГО НАЦИОНАЛЬНОГО КОНГРЕССА.
*Сайт ЧНК, 26.12.2015.*

## ИЗ КНИГИ НИКОЛАЯ ФЕДОРОВА «В ОТВЕТЕ НАВСЕГДА»*

. . .Увы, завет Патриарха в тот момент был предан забвению. А чем дальше в лес, тем больше дров. Вскоре депутаты приняли закон о языках. Дабы не слишком беспокоить общественность, предусматривалась десятилетняя процедура его вступления в силу. Кому-то показалось, что этого времени вполне достаточно, чтобы жители республики в добровольно-принудительном порядке освоили и чувашскую речь, и чувашскую письменность. А если кто-то окажется чересчур бестолковым, то это его проблемы. Целеустремленные депутаты не забыли подпереть этот дискриминационный закон государственной Программой по его реализации. Ну и какой же механизм для воплощения светлой мечты в жизнь предусматривался?

Само собой, в Программе указывалось, что «на территории республики приоритетное внимание уделяется расширению функций чувашского языка как языка коренной части населения». Как следствие, разрабатывались перечни должностей и профессий работников государственных, общественных, правоохранительных органов, предприятий, учреждений и организаций здравоохранения, торговли и бытового обслуживания, народного образования и культуры, связи и транспорта, коммунального хозяйства и других сфер, в обязанности которых входит общение с гражданами или ведение делопроизводства. Для этих работников различных профессий и должностей готовились квалификационные языковые требования. И при местных органах власти предусматривалось создать комиссии по реализации требований закона.

Уже к 1993 году все эти списки, перечни, обязательные языковые минимумы должны были быть подготовлены министерствами труда, образования, юстиции и другими ведомствами.

Государственная программа по реализации закона о языках чем-то напоминала план по построению коммунизма в отдельно взятой стране, но только не за двадцать, а за десять лет. В ней также был прописан буквально каждый шаг. В частности, указывалось, что для повсеместного использования следует отпечатать на чувашском языке бланки, формы, анкеты, квитанции, указатели. Также упоминались вывески, рекламные надписи, афиши, плакаты, буклеты... Намечалось строго контролировать использование чувашского языка в названиях товарной продукции. Предписывалось делопроизводство на чувашском языке не только в органах государственной власти, но и в коммерческих структурах. В законе указывалось, что в штатных расписаниях следует предусмотреть должности переводчиков. При этом предусматривались и меры материального поощрения. Лицам, владеющим обоими государственными языками, предписывалось платить дополнительное денежное содержание.

Неужели депутаты, одобрившие этот документ, не понимали, к каким последствиям он может привести? В их наивность верится с трудом. Но одни хотели выглядеть радетелями интересов чувашского народа, другие полагали, что в течение десяти лет вопрос сам по себе рассосется и нечего пока бучу затевать, а третьи упорно шли к поставленной цели. Тем временем в недрах националистического движения зрели весьма тревожные тенденции.

Чтобы не быть субъективным в оценке складывавшейся тогда ситуации в республике, сошлюсь на авторитет известного российского этнографа и социолога Василия Филиппова, отдавшего изучению того исторического периода несколько лет. В своей работе он, в частности, раскрывает этнополитическое кредо лиц, инициировавших приобщение чувашской молодежи к боевым искусствам Востока. Один из этих, с позволения сказать, лидеров признавался, что его мечта – «умереть за независимость Чувашии», и он готов повести за собой молодежь. По его мнению, чувашам «только оружие необходимо, тогда будет возрождение нации». На возражение о том, что, стремясь к вооруженному конфликту, он и его соратники могут принести несчастье своему народу, тот с воодушевлением отозвался: «Хотел бы я принести такое несчастье!». Другой активист националистического движения, в свою очередь, просил ученого «передать всем в Москве, что в Чувашии найдутся люди, готовые с оружием в руках до последней капли крови отстаивать государственный суверенитет» в случае, если власти решат «отобрать у чувашей их государство». Именно он украсил маленькую комнатку в кукольном театре, где базировался их штаб, портретами кавказских сепаратистов.

«По оценке прокуратуры республики, учреждение клубов восточных единоборств под эгидой откровенно враждебных российской государственности людей с негативными этноконтактными установками могло стать началом неконтролируемых событий», – пишет В. Филиппов.

Август 91-го усилил политическое брожение в республике. Коммунистическое руководство Верховного Совета ушло в отставку, в Чувашии было «скоропостижно» решено ввести президентскую форму правления. Новая власть, объявившая себя демократической, к сожалению, оказалась слабой и безликой и никак не могла серьезно влиять на ход избирательной кампании. Достаточно сказать, что тогдашний председатель республиканского парламента не смог даже выйти во второй тур голосования, намного отстав от двух лидеров – кандидатов коммунистов и националистов.

Избиратели оказались почти в безвыходной ситуации: из двух зол следовало выбрать меньшее. И тут сработал инстинкт самосохранения. Многие пошли голосовать во втором туре, но в бюллетенях вычеркивали обе фамилии. А для избрания кандидату по закону

требовалось набрать не менее пятидесяти процентов плюс один голос. В итоге ни представителю компартии Леониду Прокопьеву, ни вождю националистов Атнеру Хузангаю этого сделать не удалось. Причем, последнему – сыну знаменитого и по-настоящему уважаемого мной замечательно поэта – не хватило до заветного рубежа всего чуть более трех тысяч голосов. И тогда руководство парламента «от греха подальше», дабы больше не искушать судьбу, добилось моратория на президентские выборы.

Однако успокоения эта мера не принесла. Вскоре началось осуществление грандиозного проекта под названием «Первый съезд Чувашского Национального Конгресса». Время для решительного рывка было выбрано самое что ни на есть подходящее. Только что в одночасье развалился Советский Союз. Спать ложились в одном государстве, а проснулись в другом. В стране началась либерализация цен, сбережения на глазах превращались в пыль. Люди метались в отчаянии, хлеба зачастую купить было не на что, никто ничего не понимал. И на этом фоне объявено, что состоится какой-то судьбоносный Конгресс с неясными функциями и полномочиями. К сожалению, к созыву этого почтенного собрания приложил руку Президиум Верховного Совета, сделавший националистическому крылу очередную уступку и принявший соответствующее постановление.

В городах и районах началась кампания по избранию кандидатов. Но, как таковых, выборов не было, каждый направлял делегатов по своему разумению. И все это стали называть «высшим представительным органом чувашского народа»! А приоритетом была объявлена реализация государственного суверенитета Чувашской Республики в полном объеме. Что под этим подразумевалось, ясно из следующих строк одной из резолюций: «отношения Чувашии с Россией должны строиться на равноправии сторон». Заявлялось на съезде ЧНК и о том, что чувашскому языку необходимо придать статус единственного государственного языка республики, а городу Чебоксары следует носить только чувашское название – Шупашкар. Исключительное положение Чувашского национального конгресса подчеркивалось и тем обстоятельством, что его деятельность вопреки правам других народов финансировалась из государственного бюджета.

Но вообще, на мой взгляд, этот съезд ЧНК сделал одно большое и в определенном смысле хорошее дело. Если до момента его проведения все националистические процессы протекали как бы подспудно и не вызывали серьезной тревоги в обществе, то теперь они вырвались наружу. Еще бы – с экранов телевизоров и газетных страниц в течение нескольких дней беспрестанно лились бурные речи, призывающие фактически к отделению республики от России и построению государства по этническому признаку. И люди заволновались. Причем, главным образом, обеспокоенность выражали простые чуваши, которым явно не улыбалась перспектива быть втянутыми в опасную политическую авантюру.

Наш народ генетически освобожден от духа конфронтации, враждебности к другим, он добр и миролюбив. Чуваш скорее с себя снимет последнюю рубашку, чем ущемит другого. Но и прагматическое мышление ему не чуждо. Мне рассказали о выступлении одного старика на каком-то собрании по обсуждению итогов съезда ЧНК. «Э, раньше у нас паспорта отбирали, чтобы в города не уезжали, – говорил он. – А теперь хотят русский язык отнять, чтобы наши дети нигде не могли учиться, кроме Чувашии. И кому они будут нужны без русского языка?» Просто сказано, но как мудро.

О многом пришлось передумать, принимая решение включиться в избирательную кампанию по выборам Президента республики. В конце концов, сам с собою пошел на компромисс: «Ладно, поеду, проработаю один срок, утихомирю страсти по национальному вопросу и вернусь в Москву».

---

*Николай Федоров. В ответе навсегда. М., 2015. С. 10–13.

## ИЗ КНИГИ В.А. ТИХОНОВА «РАБОТА ДЛИНОЮ В ЖИЗНЬ: ЗАПИСКИ КОНТРРАЗВЕДЧИКА»*

...[Я] всеми силами пытался воспрепятствовать потугам разжечь межнациональную рознь. А в Чувашии в результате так называемой «перестройки» ситуация складывалась непростая. Стали формироваться радикальные силы, стремящиеся вывести республику из состава России, создать в самом сердце страны суверенный анклав. Следует, наверное, вспомнить, как создавался Чувашский национальный Конгресс (ЧНК). Организацией и проведением его первого съезда официально занималось руководство Чувашской Республики. Но фактически первую скрипку в оргкомитете играли деятели довольно радикального толка, стоявшие на позициях партии чувашского национального возрождения (ЧАП). Действовали они решительно, не слишком оглядываясь на демократические предрассудки.

Проекты итоговых документов появились только на самом съезде, его работа была организована так, чтобы исключить любые неожиданности, ведь вся дискуссия происходила в последние полтора часа работы. Из решений нужно выделить требование объявить чувашский язык единственным государственным языком на территории республики, а также декларацию о том, что столица Чувашии имеет единственное наименование – Шупашкар.

В день Конгресса появился первый номер газеты ЧАП «ATALANU» с программными статьями председателя Высшего совета партии ЧАП Николая Лукиянова «Я хочу иметь свою родину» и Вячеслава Егорова – «Неизбежность свободы». В газете были опубликованы и другие материалы, в которых открыто ставился вопрос об отделении Чувашии от Российской Федерации. А вот на съезде за предложение о внесении в документы ЧНК положения о неразрывности Чувашии и России проголосовало абсолютное меньшинство.

ЧАП собиралась диктовать свою волю и парламенту республики. Дело в том, что тогда оформленной единой оппозиции национальному движению просто не существовало. Руководство Чувашии относилось к националистам с большой опаской, с ними больше заигрывали, чем оказывали противодействие.

А по материалам газеты «ATALANU» достаточно четко были видны устремления тогдашних национальных лидеров на сближение с тюркскими государствами. Настойчиво пропагандировалась идея преемственности чувашского государства Волжской Булгарии. В руководстве ЧАПа было распространено негативное отношение к Русской Православной Церкви, шла настойчивая пропаганда как отделения чувашской церкви от Русской Православной Церкви, так и возрождения языческой религии. Настоятеля новочебоксарского храма отца Илью, говорившего о недопустимости отделения от Русской Православной Церкви, фактически согнали с трибуны.

Но вернусь непосредственно к метаниям партии чувашского национального возрождения. ЧАП находилась в довольно деликатном идейном положении – жесткая ориентация на собственные силы не подходила для трезвомыслящего руководства партии. Оно прекрасно осознавало невозможность подлинной самостоятельности республики. Более или менее тесная кооперация с Татарстаном выглядела весьма сомнительной. На исторически очень напряженные отношения накладывалась различная конфессиональная принадлежность, общие

претензии на булгарское наследство и явное стремление Татарстана к гегемонии в регионе. Поэтому партия явно стремилась к опоре на пантюркистские идеи, которые в реальности очень трудно отделить от панисламистских.

В декабре 1992 года в Чебоксарах прошел семинар «Институт президентства в республиках Российской Федерации». В его работе принимал участие Асламбек Акбулатов, госсекретарь Чеченской Республики. Была устроена пресс-конференция, где он рассказал о стабильности положения в Чечне, её экономических успехах и сообщил, что это стало возможным лишь благодаря сильной президентской власти. Воздав должное политическим талантам генерала Джохара Дудаева, он также заявил, что говорил с Кубаревым и Викторовым, и есть договоренность о приезде в будущем году чувашской делегации в Чечню для заключения экономических соглашений, прежде всего о поставках чеченских нефтепродуктов.

В конце 1992 года ситуация выглядела очень тревожной. Я вынужден был представить руководству Верховного Совета справку «О развитии социально-политической обстановки в республике», в которой констатировал, что «идеологи партии чувашского национального возрождения все более откровенно придерживаются тюркской ориентации. После Конгресса ими принимаются активные меры по развитию постоянных контактов с лидерами национальных движений Татарстана, Башкортостана, Чечни и прибалтийских республик. Среди активистов партии все более заметную роль начинают играть руководители спортивных секций восточных единоборств, члены которых активно влияют на обстановку в молодежной среде и в определенной мере контролируют её. Предпринимаются попытки придать этим группам статус охранных структур партии». Также сообщал, что трансляцию Конгресса по местному телевидению только на чувашском языке русскоязычное население восприняло с недоумением и беспокойством, а принятие резолюции «О принципах Закона Чувашской Республики «О гражданстве»», предложение объявить государственным лишь чувашский язык встретили наиболее острую реакцию.

Увы, тогдашние власти очень вяло реагировали на все эти опасные проявления. На мероприятиях национального движения порой свысока говорили о русскоязычных Алатырском и Порецком районах республики. И как бы в противовес в правительстве стали все чаще вспоминать о залежах высококачественного гипса в южных районах республики. Один из министров с воодушевлением рассказывал, что килограмм гипса за рубежом стоит около десяти долларов, а в этих районах он залегает на глубине сорока метров, там его сотни миллионов тонн. Разработка месторождения требует больших капиталовложений, но сулит республике колоссальные прибыли.

А дальнейший ход рассуждений сводился к тому, что в Алатыре и Порецком уже не раз высказывалось недовольство усилением националистических тенденций в Чувашии. И вполне реально, что в случае дальнейшего обострения ситуации руководство этих районов поставит вопрос о присоединении к Ульяновской или Нижегородской областям, а население почти наверняка это требование поддержит. Националистов эта перспектива не очень пугала, а судьба гипсового месторождения в дальнейшем оказалась незавидной. Мне же ситуация все больше напоминала карточный домик. Сначала рухнул СССР, потом к России вплотную подобрались, а еще и Чувашию готовы разорвать по лоскутку.

Характерным выдался очередной, третий по счету, съезд партии ЧАП. С основным докладом выступил президент Чувашского национального конгресса Атнер Хузангай. Он подчеркнул, что Россия встала на путь демократических преобразований и экономических реформ. Но люди, их проводящие, скорее всего в силу междоусобной борьбы за власть обесценили достижения демократии. ЧАП принимает демократические принципы в основном, однако не может мириться с рынком стихийным, не подчиняющимся законам, с властью, в которой разуверился народ, с депутатами парламента, демонстрирующими полное отсутствие этики и культуры политических дискуссий на бесконечных съездах.

Хузангай заявил, что у экономики должно быть национальное лицо. Ранее национальные особенности республики не учитывались, поэтому приходится теперь решать проблемы крупных производств, подъема уровня Чебоксарского водохранилища, размещения объекта по уничтожению химического оружия и т.д. «Рыночные условия принимаем, не отвергаем приватизацию, ибо каждый должен ощутить себя собственником, понимаем необходимость развития чувашского бизнеса. Республика обладает для этого достаточным экономическим потенциалом: и промышленным, и сельскохозяйственным». Во всех этих утверждениях ощущалась недостаточная компетентность Хузангая в экономических вопросах.

Среди делегатов распространялся второй номер газеты «ATALANU». В ней как бы невзначай публиковалась статья президента Ассамблеи тюркских народов Р. Мухаметдинова «Запад, Восток, тюркский мир и тюркизм». Автор обосновывал идею создания конгломерата тюркских государств, ориентированного на Турцию, который «в будущем может стать тем великим посредником между Западом и Востоком, посредством которого будет происходить интенсивный культурный обмен в мире и сохраняться равновесие и баланс мировых политических сил». Основное препятствие осуществлению этих радужных перспектив – влияние на тюркский мир России, которая никак не может забыть свои имперские амбиции, кто бы ни сидел в руководстве – коммунисты или демократы. В этой газете не без удивления я обнаружил выдержки из своего доклада «О развитии социально-политической обстановки в республике», направленного на имя Эдуарда Кубарева. Информировал, что заместитель министра юстиции ЧР В. Александров даже направил Совету ЧАП предупреждение о возможном прекращении деятельности партии за разжигание национальной и социальной розни. Вот и думай, как этот документ мог из кабинета спикера парламента попасть в редакцию националистической газеты.

Листаю свои дневники и поражаюсь, насколько в то время смешались не только понятия о добре и зле, правде и кривде, но даже вопросы веры и безверия. Например, в республиканской прессе была опубликована статья Виталия Станьяла «Нет только кереметь» (кереметь – главное святилище в чувашской национальной религии). Публикация появилась как реакция на неоднократные обращения к населению через средства массовой информации православных священников Ильи Карлинова и Аполлинария Павлова, предостерегавших от реставрации языческой древнечувашской религии, допускающей жертвоприношения. Станьял упрекает православных священников в клевете на чувашскую национальную религию, доказывает, что её нельзя называть языческой, а жертвоприношений, тем более человеческих, она не предусматривает. Автор сожалеет, что в то время, когда по всей республике возводят многочисленные православные церкви, а в татарских деревнях – мечети, все позабыли о религии предков: в Чувашии не строится ни одного керема.

[...]

На расширенном заседании Совета ЧНК было принято решение «шире практиковать проведение совместных с общественностью рейдов по организациям и предприятиям республики с целью активизации работ по выполнению закона о языках».

И, как следовало ожидать, произошла ответная реакция. В городском Собрании депутатов Чебоксар прозвучало предложение выйти в Госсовет ЧР с законодательной инициативой, дабы в закон «О языках» были внесены изменения, устраняющие дискриминационный характер по отношению к русскоязычному населению республики. Предложение большинство депутатов не поддержало, но звоночек прозвенел: не буди лихо, пока оно тихо.

Население республики вообще крайне негативно отнеслось к попыткам радикализировать межнациональные отношения в республике. Авторитет национальных лидеров падал прямо на глазах. Характерное интервью по радио дал президент ЧНК Геннадий Архипов. Он жаловался, что из республиканского бюджета практически не выделяется денег «на решение национальных вопросов». И вообще, правительство Чувашии, по его мнению, играет весьма слабую роль в развитии национального самосознания чувашского народа, хотя в Министерстве культуры этой проблематикой занимается специальный отдел. В результате имеет место «спад интереса к культуре титульной нации». «Если учесть, что в 1992 году ЧНК создавался при самом активном участии государства, а председатель Верховного Совета Эдуард Кубарев долго тренировался, чтобы произнести вступительную речь на первом съезде конгресса на чувашском языке (который знал плохо), то получается разительный контраст».

*В.А. Тихонов. Работа длиною в жизнь: записки контрразведчика. Чебоксары, 2015. С. 119–124, 140.

## ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН КОМИТЕЧĔСЕМ

*Документа алă пуснă: 11.01.2016.*

**Йĕркелӳ тата право комитечĕ**
Ивантаев Петр Васильевич – ертӳçи
Николаев Станислав Андреевич
Лукианов Николай Егорович
Казаков Сергей Дмитриевич
Краснов Михаил Николаевич

**Экономикăпа предпринимательство комитечĕ**
Мешков Олег Вадимович – ертӳçи
Капитонов Александр Петрович
Волков Федор Николаевич

**Культура комитечĕ**
Османова Елена Кирилловна – ертӳçи
Воронова Зинаида Ивановна
Яковлева Зоя Аркадьевна
Никитина Олеся Арнольдовна
Павлова Маргарита Яковлевна
Васильевна Наталья Викторовна
Угаслова Ирина Евсеевна
Антонов Леонид Владимирович
Лампасова Ирина Алексеевна
Васильев Владимир Александрович
Балтаева Людмила Владимировна
Александров Вячеслав Леонидович
Изекеева Лидия Николаевна
Архипова Вера Севастьяновна
Константинова Лидия Евсеевна
Малина Елена Евсеевна
Анисимова Лариса Валерьевна

**Вĕренӳпе наука комитечĕ**
Никифоров Геронтий Лукиянович – ертӳçи
Анисимова Юлия Елисеевна
Иванов Виталий Петрович
Хусанкай Атнер Петрович
Егорова Анна Семеновна
Виноградов Юрий Михайлович
Денисова Татьяна Витальевна
Степанова Ирина Алексеевна
Майков Евгений Александрович
Ишова Альбина Валентиновна
Степанов Александр Марсович
Петрова Татьяна Николаевна
Фомина Вера Артемьевна
Тяхмусова Светлана Вячеславовна
Игнатьева Анисия Павловна

**Массăллă информаци хатĕрĕсемпе ĕçлекен комитет**
Леонтьев Алексей Петрович – ертӳçи
Андреева Евдокия Александровна
Вражкин Александр Николаевич
Егоров Николай Иванович
Станьял Виталий Петрович
Филиппова Лидия Ивановна
Хусанкай Атнер Петрович
Кибеч Анатолий Ильич
Мустаев Олег Николаевич
Сарпи Раиса Васильевна
Цыпленков Олег Михайлович
Яковлева Зоя Аркадьевна

**«Сывă наци» комитет**
Зорин Юрий Александрович – ертӳçи
Петрова Нина Пантелеевна
Васильев Виталий Петрович
Яковлева Зоя Аркадьевна

**«Чăваш ялĕ» комитет**
Бахмисов Эдуард Константинович – ертӳçи
Асамат Светлана Владимировна
Ерагин Евгений Евстафьевич
Козлова Зинаида Алексеевна
Тукмаков Александр Николаевич
Тяпкин Владимир Геннадьевич
Большова Светлана Васильевна
Тимофеев Воладар Аркадьевич
Волков Федор Николаевич
Николаев Станислав Андреевич

**Регионсемпе ĕçлекен комитет**
Яковлев Константин Геннадьевич – ертӳçи
Михайлов Юрий Павлович
Краснов Михаил Николаевич
Казаков Сергей Дмитриевич

**Çамрăксен комитечĕ**
Никитина Олеся Арнольдовна
Волков Федор Васильевич
Цыпленков Олег Михайлович
Кузнецов Андрей Геннадьевич
Антонов Леонид Владимирович
Лампасова Ирина Алексеевна

**«Чăваш хĕрарăмĕ» комитет**
Петрова Нина Пантелеевна – ертӳçи
Димитриева Нина Ивановна
Удалова Ирина Витальевна
Абакшина Галина Анатольевна
Андреева Евдокия Александровна
Григорьева Лидия Григорьевна
Иванова Василиса Васильевна
Немцева Ольга Вениаминовна
Печникова Светлана Владимировна
Сарпи Раиса Васильевна
Филиппова Лидия Ивановна
Зайцева Ольга Юрьевна
Яковлева Зоя Аркадьевна

**Муниципалитетсемпе ĕçлекен комитет**
Николаев Станислав Андреевич – ертӳçи
Ивантаев Петр Васильевич

**Физкультурăпа спорт комитечĕ**
Васильев Виталий Петрович – ертӳçи
Зорин Юрий Александрович

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ ТАВРА – «ÇАВРА СĔТЕЛ»

*Чăваш наци конгресĕ кăрлачăн 20-мĕшĕсенче «Хальхи тапхăрта чăваш чĕлхипе культурине упраса хăварасси тата аталантарасси: çивĕч ыйтусем тата малашлăх» темăпа «çавра сĕтел» ирттерчĕ.*

ЧНК президенчĕ **Николай Угаслов**, унăн çумĕсем **Валерий Клементьевпа Петр Ивантаев**, Конгресс ĕçтăвкомĕн председателĕн çумĕ тата вĕренÿпе ăслăлăх комитечĕн председателĕ **Геронтий Никифоров**, Президиум пайташĕ **Юлия Анисимова**, аслă шкулсен чăваш чĕлхин ăстисем, Ваттисен Канашĕн пайташĕсем хутшăнчĕç. Николай Угаслов чăваш чĕлхипе тата культурипе çыхăннă ыйтусене тĕплĕн сÿтсе явма, тăван чĕлхене аталантарма май паракан пулăмсене палăртса республика пуçлăхĕ умне тăратмашкăн хатĕрлеме ыйтрĕ. Ваттисен Канашĕн председателĕ **Василий Шадриков** республикăра наци кадрĕсене хатĕрлес ыйту çивĕч тăнине палăртрĕ.

Чăваш чĕлхин ăстисем паянхи кун чăваш чĕлхи шăпи çинчен пăшăрханса калаçрĕç. «Сÿлтисем пире итлеççĕ, анчах илтмеççĕ», – терĕ И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУ доценчĕ **Тамара Артьемьева**. – Республикăмăрта «Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» саккунпа килĕшÿллĕн чăваш чĕлхи вырăс чĕлхипе танах патшалăх чĕлхи пулнă май, ăна хисеплесси учреждениесен ертÿçисенчен нумай килет». Тамара Васильевна чĕлхене аталантарма ăслăлăх лабораторийĕ туса хума сĕнчĕ. «Ăнăçулăх тĕнчи» ют çĕр-шыв чĕлхисен шкулĕн ертÿçи **Александр Блинов** хулара чăваш чĕлхине вĕрентмелли кăсăклă меслетсемпе майсем тумаллине, шкул ачисене паянхи куна тивĕçтерекен кăсăк кĕнекесем кирлине каларĕ, ачасемпе килте ашшĕ-амăшĕн чăвашла калаçмалли пирки палăртса хăварчĕ.

ЧР вĕренÿ институчĕн чăваш чĕлхипе литературин кафедрин пуçлăхĕ **Анна Егорова** доцент, çак институтри наци вĕренÿ центрĕн пуçлăхĕ **Ирина Степанова**, **Юрий Виноградов** доцент тата ытти специалистсем чăваш чĕлхин пĕлтерĕшне, ун кирлĕлĕхне ÿстерессе тата талккăшне сарасси пирки хăйсем мĕн шутланине пĕлтерчĕç.

ЧНК пресс-служби.
*21.01.2016.*

## «ХАСТАР» УШКĂН ÇĔНЕЛЕТ

*Чăваш наци конгресĕ хастар чăвашсене хутшăнтарса комитетсен ĕçне вăйлатас тĕллевлине эпир пĕлтерни‌ччĕ ĕнтĕ. Пĕлтĕр вĕренÿпе ăслăлăх, культура комитечĕсене çĕнĕ çынсене кĕртрĕмĕр. Халĕ çак комитетсен хастарлăхĕ ÿснине палăртма пулать.*

Çамрăксен «Хастар» ушкăнне те çĕнĕрен чĕртсе яма вăхăт çитрĕ. Ака уйăхĕн 6-мĕшĕсенче Конгресăн лару залне яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç пуçтарăнчĕ. Саккун енĕпе ĕçлекен юристсем, культурăра, хаçат-журнал редакцийĕсенче, радио-телекуравра тăрăшакансем, аслă вĕренÿ заведенийĕсенче вĕренекенсем килчĕç ЧНК çуртне. Хальлĕхе вĕсем вун иккĕн.

ЧНК президенчĕн пĕрремĕш çумĕ **Валерий Клементьев**, культура комитечĕн ертÿçи **Елена Османова** тата президентăн информаци енĕпе ĕçлекен пулăшуçи, пресс-служба ертÿçи **Зоя Яковлева** хастар чăваш çамрăкĕсене Конгресс ĕç-хĕлĕпе паллаштарчĕç, тĕп тĕллевне уçса пачĕç. Вĕсем çамрăксен «Хастар» ушкăнĕ мĕнлерех пулмаллине, унăн тĕллевĕсене ăнлантарчĕç. Калаçура яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç майĕпен уçăлса пычĕ, кашни хăйпе тĕплĕн паллаштарчĕ.

Аслисем сĕннипе çамрăксен «Хастар» ушкăнăн ертÿçине тата унăн çумĕсене кунтах суйлас терĕç. Председателе уçă сасăлавпа И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентне **Владислав Московцева**, унăн пулăшуçисене **Елена Светлая** çыравçăпа **Регина Чижкина** юрăçа суйларĕç. Çитес вăхăтра ЧНК çамрăксен ушкăнĕн çĕнетнĕ Уставне йышăнма, малашнехи ĕçсене палăртма калаçса татăлчĕç.

ЧНК пресс-служби.
*6.04.2016.*

## «АНЛĂ ЯНРА, ЧĂВАШ ЧĔЛХИ!

*Çак ятпа иртрĕ ака уйăхĕн 25-мĕшĕсенче Чăваш наци библиотеки умĕнчи И.Я. Яковлев скверĕнчи уяв.*

Культура министерствипе ЧНК йĕркеленипе Чăваш чĕлхи кунне поэтсемпе писательсем, артистсемпе юрăçăсем, студентсемпе шкул ачисем, чăвашлăхшăн çунакан хастарсем хутшăнчĕç.

Уяв митингне Чăваш наци конгресĕн президенчĕ **Николай Угаслов**, унăн çумĕсем **Валерий Клементьев**, **Петр Ивантаев**, **Алексей Леонтьев**, Президиум пайташĕсем те килсе çитрĕç.

Иван Яковлев çуралнăранпа 168 çул çитнине тата чăваш чĕлхине халалланă уява ЧР культура министрĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пыракан **Константин Яковлев** республика Пуçлăхĕн саламĕпе пуçларĕ. **Николай Угаслов** чăваш сăмахĕн витĕмлĕ пĕлтерĕшне, Иван Яковлевич тăван халăхăмăршăн мĕнлерех вышкайсăр ĕç туса хăварнине асăнчĕ, пурне те тăван чĕлхене упраса хăварассишĕн тăрăшма чĕнсе каларĕ.

Çак кунах Чăваш наци радиовĕ уçăлнăранпа çичĕ çул çитнине уявларĕç. Çапла, çичĕ çул ĕнтĕ пирĕн юратнă радиовăмăр тĕнчипе янăрама пуçлани! ЧНК Президенчĕ **Николай Угаслов**, ĕç тăвакан комитет председателĕн çумĕ **Геронтий Никифоров**, пресс-служба ертÿçи **Зоя Яковлева** наци радиовĕн тÿрĕ эфирĕнче пулчĕç.

Чăннипех те уявран та уяв пулчĕ ку кун: хĕвелĕ те йăл–йăл кулчĕ, чăваш сăмахĕ, юрри-ташши ытармалла мар илемлĕн янăрарĕ. Çапла ялан, кашни кун, ирĕн-каçăн, мĕн пур çĕрте ирĕклĕн янăратăр пирĕн авалхи çепĕç те пуян, мăнаçлă та хăватлă чăваш чĕлхи!

ЧНК пресс-служби. *25.04.2016.*

## МĂН КАНАШ ЛАРĂВĔ

*Çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕсенче ЧНК Мăн Канашĕн пайташĕсем çулталăкра пĕрре иртекен ларăва пуçтарăнчĕç. Ăна ЧНК президенчĕ **Николай Угаслов** уçрĕ.*

«Хисеплĕ Мăн Канаш членĕсем, 101 пайташран 77-шĕ кунта пуçтарăннă, кворум пур, апла пулсан Мăн Канаш уçăлнă тесе пĕлтеретĕп», – терĕ Николай Федорович. ЧНК гимнне – «Алран кайми» юрра – пурте хăпăрсăн тăрса юрланă хыççăн Конгресс президенчĕ аякран килнĕ регионсенчи чăваш автономийĕсен ертÿçисемпе тата хăнасемпе паллаштарчĕ.

Мăн Канашăн кун йĕркинче виçĕ ыйту: 1. Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен» калакан саккунĕ мĕнле пурнăçланса пыни; 2. ЧНК Президиумĕн ĕç-хĕлĕ тата ĕç планне улшăнусем кĕртесси; 3. Тĕрлĕ ыйтусем.

Пĕрремĕш ыйтупа тĕп доклада Чăваш Республин вĕренÿ министрĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пыракан **С.В. Петрова** турĕ. Вăл республикăра чăваш чĕлхине вĕрентесси мĕнлерех пулса пынипе паллаштарчĕ. «Чăваш ялĕсенчи ача сачĕсенче ашшĕ-амăшĕ ыйтнипе вырăсла программа çине куçса пыни пăшăрхантарать, ку чăвашла вĕрентессине чăрмантарать. Аслисем ачисене килте чăвашла калаçтармаççĕ. Эсир общество институчĕ, пулăшăр», – терĕ Светлана Владимировна. «Хамăр чăвашла калаçатпăр, ачасене те чăвашла калаçтарас енĕпе пирĕн çине тăрса ĕçлемелле», – пĕтĕмлетрĕ вăл юлашкинчен.

**Николай Угаслов** Конгресс тăван чĕлхене упраса хăварса аталантарассипе çулталăк хушшинче мĕнле ĕçсем тунипе паллаштарчĕ, Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне чĕлхесем çинчен калакан саккуна пурнăçлама чылай сĕнÿ пачĕ. Сăмахран, республикăри влаç тытăмне, массăллă информаци хатĕрĕсен пуçлăхĕсене тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене çынсене ĕçе илнĕ чухне чăваш чĕлхине пĕлнине шута илме ыйтрĕ. Ку сĕнĕве Мăн Канаш пайташĕсем алă çупсах йышăнчĕç.

**Елена Михайлова (Енькка)** – Чăваш Республикин вĕренÿ институчĕн наци вĕренĕвĕн тата ăс-хакăлпа йĕрке-тирпей аталану центрĕн аслă ăслăлăх сотрудникĕ тухса калаçнине Конгресс хатарĕсем питĕ тимлĕн итлерĕç. Елена Енькка (хулара ÿснĕ чăваш хĕрĕ) вырăсла калаçрĕ

пулсан та питӗ чуна ыраттармалли, ҫӗнӗлле ыйтусене хускатрӗ. Ачана амăш сĕчĕпе тăван чĕлхепе калаҫма вĕрентмесен нихăҫан та чăн чăваш тăваймăн, пулчĕ ун шухăшĕ. Елена Викторовнăпа килĕшсе ЧНК президенчĕн ҫумĕ **Олег Мешков** ачасене чăвашла вĕренме хавхалантармалли, чĕлхен кирлĕлĕхне туйтармалли мелсем шырама сĕнчĕ.

Мăн Канаш ларăвĕ хĕрсе пынă май **Виталий Станьял** ăсчах ЧНК президентне чылай ĕҫ тума май тупнăшăн тав турĕ, анчах тата та хăюллăрах ĕҫлемеллине аса илтерчĕ. Виталий Петрович орфографи ыйтăвĕсене те хускатрĕ.

ЧНК Мăн Канашĕн иккĕмĕш ыйтăвĕпе президентăн пĕрремĕш ҫумĕ **Валерий Клементьев** доклад турĕ. Вăл Конгресс иртнĕ Мăн Канашранпа (2015 ҫулхи кăрлач уйăхĕнченпе) мĕнлерех ĕҫсем туса иртгернипе паллаштарчĕ, калаҫнă сăмахсене видеокуравпа ҫирĕплетсе пычĕ.

Валерий Леонидович шухăшне тăсса ЧНКн Красноармейски район уйрăмĕн ертӳҫи **Зинаида Михайлова**, Чăваш Республикин халăх писателĕ **Анатолий Кибеч**, Пушкăрт Республикинчи чăваш автономийĕн ертӳҫин ҫумĕ **Юрий Михайлов**, Ҫĕпĕрпе Урал чăвашĕсен автономийĕсен Канашĕн председателĕ **Владимир Логинов** мĕнлерех ĕҫлесе пынипе паллаштарчĕҫ.

Мăн Канаш Президиум йышне улшăнусем кĕртрĕ.

*ЧНК пресс-службиӗ.*
*26.06.2016.*

# ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН МĂН КАНАШĔН ЙЫШĂНĂВĔ

**Чăваш Республикин «Чăваш Республикин чĕлхесем ҫинчен» саккунне мĕнле пурнăҫласа пыни ҫинчен**

Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене ҫапла сĕнес:

– «Чăваш Республикин чĕлхесем ҫинчен» саккунăн чăваш чĕлхипе литературине вĕренмелли условисем туса хурасси ҫинчен калакан положенине пурнăҫлас, чăваш чĕлхипе литературине вĕренме ҫителĕклĕ сехет сыхласа хăварас тĕллевпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентмелли сехетсене чакарасси патне илсе пыракан ĕҫсем тăвасран (вăл шутра 5–11-мĕш классене 5 кунлă вĕренӳ эрнине куҫасран) асăрханма сĕнсе ятарлă ҫыру яма ыйтас;

– Чăваш Республикин вĕренӳ институтĕнче тăван чĕлхе ăслăлăхĕн пысăк ыйтăвĕсене татса пама, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентессине тĕпчев ҫинче никĕслеме, меслетҫĕсене, кĕнеке ҫыракансене пĕрлĕхлĕ ĕҫе явăҫтарма ăслăлăх-тĕпчев лабораторине уҫма сĕнес;

– патшалăхри тивĕҫлĕ органсеме калаҫса татăлса Чăваш Республикинче 9 класс пĕтерекенсем валли суйласа илмелли экзаменсен шутне тăван чĕлхене кĕртес ыйтăва пăхса тухма ыйтас;

– шкул умĕнхи вĕренӳ организацийĕсенче (учрежденийĕсенче) чăваш чĕлхине вĕрентес ĕҫе тĕплĕнрех йĕркелеме ыйтас;

– республикăн вĕренӳ институтĕнче шкул умĕнхи вĕренӳ организацийĕсен (учрежденийĕсен) воспитателĕсемпе методисчĕсем валли чăваш чĕлхине вĕрентме пулăшакан ятарлă курссем йĕркелеме ыйтас;

– Чăваш Республикинче чĕлхе, литература, культура енĕпе наци кадрĕсем хатĕрлекен гуманитари лицейĕ уҫма вăхăт ҫитнине палăртас (Чăваш Республикин культура, национальноҫсен ĕҫĕсен тата архив ĕҫĕн министерствипе пĕрле);

– вĕренӳ кĕнекисене, ҫав шутрах килти вулав кĕнекисене, ача шутне пăхса ҫителĕклĕ кăларма ыйтас;

– республика тулашĕнче чăваш чĕлхипе литератури тата историпе культура вĕрентекенсем валли методикăпа чĕлхе пĕлĕвне ӳстерме Чăваш Республикин Вĕренӳ тата ҫамрăксен политикин министерствипе ытти регионсен вĕренӳ министерствисем/департаменчĕсем хушшинче ятарлă килĕшӳ туни вырăнлă пулнине палăртас;

– республика тулашĕнчи чăваш шкулĕсене чăваш чĕлхипе литературин тата тăван ен историйĕпе культурин вĕренӳ кĕнекисен электронлă варианчĕсемпе тивĕҫтерес ыйтăва ятарлă сӳтсе явма ыйтас;

– федерацин патшалăх вĕренӳ стандартне туллин пурнăҫа кĕртме чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсене кирлĕ программăсемпе, компьютерпа е ноутбукпа, проекторпа тата ытти техника хатĕрĕпе тивĕҫтерме ыйтас;

– профессиллĕ вĕренӳ организацийĕсенче (колледжсемпе техникумсенче) чăваш чĕлхине вĕрентме май тупма ыйтас;

– ял тата хула шкулĕсенчен 9 класс вĕренсе тухакансене «Чăваш чĕлхине алла илнĕ» (Обладающему чувашским языком) сертификат пама сĕнес.

– наци компонентне тивĕҫтерекен аудио-видео-компьютер материалĕсемпе дисксем хатĕрлекен, чăваш чĕлхипе, литературăпа, фольклорпа меслет кĕнекисемпе нота кĕнекисене ҫыракан авторсем, вĕсен электрон вариантне ҫыракансем валли тĕллевлĕ грантсем йĕркелеме сĕнес;

– ял клубĕсемпе культура ҫурчĕсен ĕҫне ҫӳлерех шая ҫĕклес, вĕсенче ирттерекен ĕҫ-хĕле чăваш чĕлхипе усă курассине тĕп вырăна хурас;

– чăваш халăх пурнăҫĕпе тата кун-ҫулĕпе ҫыхăннă вырăнсене курса ҫӳремеллин (туризмăн) ҫĕнĕ маршручĕсем йĕркелеме ыйтас;

– Шупашкарта ҫулсерен ирттерекен Пĕтĕм чăвашсен «Акатуйне» чăвашлăх хăй еврĕлĕхĕпе сĕмне (колоритне) парса ирттерме сĕнес;

– ял кунĕсемпе уявĕсене ирттерес йĕркене вăйлатма ыйтас;

– Чăваш автономи облаҫне туса хунăранпа 100 ҫул, Шупашкар хули йĕркеленнĕренпе 550 ҫул уявĕсене хатĕрленнĕ чухне чăвашлăх хăй еврĕлĕхĕпе сĕмне (колоритне) шута илме сĕнес;

– Чăваш патшалăх телерадиокомпанине, Чăваш наци радионе тата телекуравне ача-пăча тата шкул ачисем валли чăвашла кăларăмсен хисепне ӳстерме тата шкул умĕнхи вĕренӳ организацийĕсен (учрежденийĕсен) воспитателĕсен, чăваш чĕлхипе литератури тата культури вĕрентекен пултаруллă учительсен паха опытне сарма ятарлă кăларăмсем тума ыйтас;

– ача-пăча валли чăвашла мультфильмсен, аслисем валли чăваш халăх пурнăҫне кăтартакан истори фильмĕсем, чăвашла илемлĕ фильмсем ҫителĕклĕ кăларма ыйтас (Чăваш Республикин Культура, национальноҫсен ĕҫĕсен тата архив ĕҫĕн министерствипе пĕрле);

– Чăваш Республикин мĕн пур ялĕнче Чăваш наци телекуравĕн тата радио кăларăмĕсене курма тата итлеме май туса пама ыйтас;

– хуласемпе ялсенче вырнаҫнă организацисемпе учрежденисен, суту-илӳпе лавккасен ячĕсене Чăваш Республикин патшалăх чĕлхисемпе чăвашла тата вырăсла ҫырассине йĕркене кĕртсе ҫитерме тата вĕсене ҫĕнĕрен ят парассине йĕркелеме ыйтас;

– хуласемпе район центрĕсенче тата ялсенче курăнакан рекламăна чăвашла тата вырăсла ят парассине тата ҫырассине вăя кĕртме ыйтас;

– географи объекчĕсен ячĕсене, ҫул паллисемпе кăтартмăшсене, урам ячĕсене, кăтарту хăми ҫинче ялсен, транспорт чарăнăвĕн ячĕсене чăвашла та, вырăсла та ҫырассине ҫирĕп йĕркепе тытса пыма ыйтас;

– пурне те усă курма чăваш шрифчĕн пĕр тĕслĕхне патшалăх шайĕнче ҫирĕплетме ыйтас;

– Чăваш Республикинче туса кăларакан юр-вара, ĕҫме-ҫимене, ҫăкăр-тăвара, апат-ҫимĕҫе тата ытти чĕр тавара, япалапа хатĕр-хĕтĕре Чăваш Республикин патшалăх чĕлхисемпе чăвашла тата вырăсла тĕрĕс ят парассине, этикеткăсене чăвашла-вырăсла ҫырассине йĕркелеме, ҫырнине хаклама чĕлхе специалисчĕсене явăҫтарма ыйтас. Чăваш чĕлхи тата вырăс чĕлхипе усă курнине тĕрĕслеме тивĕҫлĕ те ятарлă учрежденисене тупма хушас.

**Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн ĕҫĕ ҫинчен**

1. «Чăваш наци конгресĕ» регионсен хушшинчи общество организацийĕн Президиумĕн хальхи тапхăрта туса ирттернĕ ĕҫ-хĕлне ырлас.

2. Чăваш наци конгресĕн Президиумне уйрăм ҫынсене тата учрежденисемпе организацисене Чăваш наци конгресĕн йышне илессине, Чăваш наци конгресĕн тĕрлĕ енĕпе ĕҫлекен комитечĕсен ĕҫне вăйлатма, Чăваш наци конгресĕн ыр кăмăллăх фончĕн ĕҫне йĕркелесе вăйлатма хушас.

3. Чăваш Республикинче тата Раҫҫей Федерацийĕн чăвашсем йышлă пурăнакан регионĕсенче 2016 ҫулхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕчченех «Халăх хутшăнăвĕсем тата культура аталанăвĕ» темăпа социологи тĕпчевĕсем ирттерессине вĕҫлеме ыйтас.

4. «Ҫамрăксем – чăваш халăх пуласлăхĕ» темăпа Пĕтĕм чăваш ҫамрăкĕсен пĕрремĕш форумне 2016 ҫулхи чӳк уйăхĕнче ирттерме палăртас.

**Вице-президент ҫинчен**

1. Константин Геннадиевич Яковлева «Чăваш наци конгресĕ» регионсен хушшинчи общество организацийĕн Президиумĕн йышĕнчен хăй ирĕкĕпе кăларас тата Конгресăн вице-президенчĕн должноҫĕнчен хăтарас;

2. ЧНК Президиумĕн пайташне Нина Пантелеевна Петровăна «Чăваш наци конгресĕ» регионсен хушшинчи общество организацийĕн вице-президентне лартас;

3. Чăваш Республикин Культура, национальноҫсен ĕҫĕсен тата архив ĕҫĕн министерствин «Ҫеҫпĕл Мишши ячĕллĕ Халăхсен Туслăхĕ орденлĕ Чăваш патшалăх ҫамрăксен театрĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕн директорне Елена Васильевна Николаевăна «Чăваш наци конгресĕ» регионсен хушшинчи общество организацийĕн Президиумĕн йышне илес.

*23.06.2016.*

# АРХИПОВĂН ЯЧĔ ХАЛĂХ АСĔНЧЕХ

*«Пуян ҫын кайсан пурлăх юлать, ыр ҫын кайсан ят юлать», – тенĕ. Ыр ҫын ятне халăх упрать. Чăваш халăхĕшĕн нумай ĕҫ туса хăварнă Геннадий Архипова асăнса Етĕрне хулинчи вăл пурăннă ҫурт ҫине ҫĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕсенче Асăну хăми ҫакрĕҫ.*

Ырă ĕç пуçаруçисем – Етĕрнери библиотека директорĕ **Нина Долгова**, «Ленинская искра» колхоз ертÿçин çумĕнче ĕçленĕ **Николай Сапожников** тата Тури Ачак шкулĕн учителĕ **Татьяна Яжейкина**. Асăну хăмине ырă кăмăллăх мелĕпе – нимелле тунă. Ăна Геннадий Николаевичăн мăшăрĕ **Ирина Архипова** тата Етĕрне районĕн администрацийĕн пуçлăхĕ **Владимир Кузьмин** уçрĕç.

Унăн малашне те тăван еншĕн, чăваш халăхне пĕр тĕвве чăмăртассишĕн ĕçлес кăмăлĕ пысăкчĕ. Шел, кун-çулĕ вăхăтсăр – пĕлтĕрхи нарăсăн 3-мĕшĕсенче – татăлчĕ.

Геннадий Архипова тус-юлташĕ, унпа пĕрле тачă çыхăнса ĕçленĕ общество хастарĕсем аса илчĕç. **Владимир Кузьмин** Анат Явăшра çуралса ÿснĕ ентешĕпе мăнаçланнине палăртрĕ. ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Геннадий Архипов «Хыпар» хаçатра та ĕçленĕ.

– Асăну хăми Геннадий Николаевич ятне асра хăвармалли малтанхи утăмсенчен пĕри пултăр. Кайран кĕнеке те кăларăпăр. Вăл – пирĕн асра яланлăхах юлмалли çын, – терĕ Архиповăн чи çывăх ĕçтешĕсенчен пĕри, «Хыпар» хаçата тата «Хыпар» Издательство çуртне 23 çул ытла ертсе пынă, ЧНК вице-президенчĕ **Алексей Леонтьев**. – Геннадий Архипов Чăваш наци конгресĕн президентĕнче ĕçленĕ çулсенче çĕр-шывăн мĕн пур кĕтесĕнче чăваш наци пĕрлĕхĕсемпе автономи центрĕсем уçăлчĕç. Вăл республика тулашне çÿремен эрнесем пулнăши ун чухне? Юрлама-ташлама мар. Инçетри чăвашсене чăмăртама ăнтăлнă Геннадий Николаевич.

Асăну хăмине уçма Самартан та, Тюменьрен те хăнасем хутшăнчĕç. Самар чăвашĕсен ертÿçи **Николай Давыдов** унăн пултарулăхĕ, ĕçченлĕхĕ, ырă кăмăлĕ пирки çапла каларĕ:

– Çынни пысăках та марччĕ, анчах ĕçĕсем çав тери пысăкчĕ.

И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ профессорĕ, Архиповăн пĕрремĕш çумĕ пулнă **Владимир Иванов** Геннадий Архипов тăрăшнипе мĕн пур чăваш халĕ Республика кунĕнче Акатуйра ĕлĕкхилле çерем çинче савăннине палăртрĕ.

Аякран килнĕ хăнасем, Етĕрне тăрăхĕнче пурăнакансем, юлташĕсем, пĕрле ĕçленĕ хастарсем Геннадий Архипов тунă ĕçсен пархатарлăхне, вĕсене нимĕнпе виçме çуккине тепĕр хут çирĕплетрĕç. Ятне упрани – унăн ĕçне хаклани.

Елена ТРОФИМОВА.
*ЧНК сайчĕ, 27.06.2016.*

## КРЫМРА ТĂВАН ХАЛĂХ ЮРРИ-КĔВВИ ЯНĂРАРĔ

*Официаллă статистика çирĕплетнĕ тăрăх – Крымра пурăнакан йăхташăмăрсен йышĕ 2,5 пин çынран та иртет. Вĕсенчен 500-шĕ Севастопольте тата Балаклава районĕнче тĕпленнĕ. Севастопольти чăвашсем 2004 çулта ентешлĕх йĕркеленĕ. Крымри чăваш наци культура автономине пĕлтĕр туса хунă. Вăл Керчьри, Симферопольти тата Ялтăри ентешлĕхсене пĕрлештерсе, тăван чĕлхепе культурăна упраса хăварассишĕн тăрăшассине вăй парса тăрать.*

Чăваш наци конгресĕ кăçал Севастопольти Балаклава районĕнче чăваш халăхĕн наци уявне – Акатуй – йĕркелерĕ. Палăртса хăварар: «Çĕрпе суха пуç туйне» ирттернин пĕлтерĕшĕ уяв шайĕпе кăна танлашмасть. Вăл чи малтанах чăваш халăхне пĕрлештерекен, туслăхне çирĕплетсе вăйлатакан пысăк пулăм. «Чăваш халăхĕн малашлăхĕ пысăк. Пĕрле ĕçлесе пурăнар! Пĕрлĕхре – вăй!» – çапларах курать çак мероприяти тĕллевне-пĕлтерĕшне Крымри Акатуй пуçаруçи, ЧНК вице-президенчĕ **Валерий Клементьев**. Чăваш Ен хастарĕсен сĕнÿ-пуçарăвне Крымри йăхташсем ырласа йышăннă. «Мĕн пур регионти чăвашсене пухма май килчĕ. Пĕр-пĕринпе хутшăнни питĕ лайăх», – тет Крымри чăваш наци культура автономийĕн ертÿçи **Андрей Яковлев**.

Тĕнче тăрăх саланнă чăвашсемпа Крымра пĕрремĕш хут питĕ пысăк йышпа – 600 ытла çын – пухăнчĕç. ЧНК пресс-службин ертÿçи **Зоя Яковлева** пĕлтернĕ тăрăх – уява тĕрлĕ регионтан 20 яхăн делегаци, юрăçсемпе фольклор ушкăнĕсем хутшăннă. Унта Пенза, Челябинск, Чĕмпĕр, Иркутск, Оренбург, Томск облаçĕсенчи, Тутар, Чăваш республикисенчи, ытти тăрăхри чăвашсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă. Республикăри Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ çамрăксен театрĕн артисчĕсем сцена çинче истори саманчĕсене кăтартнă. «Сувар» ансамбль, Муркаш районĕнчи «Калинка», «Шуракăш», Çĕмĕрле районĕнчи «Шанчăк», Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Ритм», «Сĕнтĕр», ытти ушкăнпа ансамбльсем, эстрада юрăçисем пултарулăхĕпе савăнтарнă.

Крым çĕрĕ çине килнĕ хăнасем чи малтан Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Севастополь хулине хÿтĕлесе пуç хунă чăваш салтакĕсен асăну чулĕ патне чĕрĕ чечексем хунă. Пачăшкасем кĕлĕ вуланă. ЧНК президенчĕ **Николай Угаслов** сăвапла вырăнта сăмах каланă, паттăрсене асăнса ку вырăнта палăк тумашкăн пулăшма шантарнă.

Çанталăк çумăрлă тăнăран (анчах йĕпе-сапа çынсене пачах та пăшăрхантармарĕ, Акатуй çумăрĕ пуян тухăç палли пулнине пурте аван пĕлеççĕ) уява Балаклаври культура керменĕнче чаплă ларутăрура уçрĕç. Раççей, Крым, Чăваш республикисен, Севастополь хулин тата Чăваш наци конгресĕн гимнĕсене зал тулли халăх ура çине тăрса юрларĕ. Балаклава район департаменчĕн директорĕ **Сергей Седых** чăвашсем ĕçчен тата хастар халăх пулни, пĕрле савăнма пĕлни çинчен ырласа сăмах каларĕ. ЧНК президенчĕ **Николай Угаслов** Севастополь хулинче пурăнакан чăвашсене аякри йăхташĕсене ăшшăн кĕтсе илнĕшĕн тав турĕ: «Пĕрле пулсан, туслă пурăнсан эпир вăйлă та пуян!» Чăваш Республикин культура министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан **Константин Яковлев** çак уяв чăвашсене пĕр шухăшпа, пĕр туйăмпа хăватлантарнине, пĕрлештернине палăртрĕ. Уявра Крымри Балаклава муниципалитет округĕн тата Чăваш Республикин Етĕрне район администрацийĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме йышăну турĕç.

Хĕвел пăхса ярсан Акатуй халăхĕ Балаклава хули çывăхĕнчи лапама куçрĕ, Шупашкартан, Чăваш Республикин районсенчен, Саратов тăрăхĕнчен, Севастопольпе Симферополь хулисенчи автономисем йăлана кĕнĕ йĕркепе хăйсен картишĕсене хатĕрленĕ, тĕрлĕ курав йĕркеленĕ. «Паха тĕрĕ» фирма, **Зинаида Воронова**, **Людмила Балтаева**, **Нина Наумова**, ытти ăстасем хăйсен ал ĕçĕсемпе паллаштарчĕç. Фольклор ушкăнĕсемпе юрăçсем пĕр-пĕринпе улшăнса Крым тăвĕсене янратса юрăсем шăрантарчĕç, ура хуçса ташларĕç. Крым Республикинче пурăнакан тĕрлĕ наци çыннисем чăваш халăхĕн пуян йăли-йĕркине курса тĕлĕнчĕç.

«Балаклава лапамĕнчи Акатуй çур пине яхăн çынна пуçтарчĕ. Кашнинех чăваш халăх апат-çимĕçне тутанса пăхма, спорт ăмăртăвĕсене хутшăнма, кăмăлтан юрласа ташлама пултарчĕ», – чăвашсен уявĕ çинчен çапла каласа кăтартнă «Крым-24» канал тележурналисчĕсем.

Крымри Акатуя хутшăннă ентешсем уяв пирки хавхаланса каласа кăтартаççĕ. «Севастополь казакĕсем çар кухнинчи яшкапа тата пăтăпа сăйларĕç. Пурне те килĕшрĕ салтак пătти. Иртнĕ вăрçăран юлнă нимĕç окопĕсемпе дотсене курса тĕлĕнтĕмĕр. Хура тинĕс хумĕсемпе кунти пĕрремĕш Акатуй ĕмĕрлĕхех асра юлĕç», – тет Шупашкар районĕнчи Атăльялра пурăнакан **Николай Смирнов**.

Валентина БАГАДЕРОВА.
*«Хыпар», 5.08.2016, 122–123№.*

## ЧНК ЮБИЛЕЙĔ ТĔЛНЕ – КĔНЕКЕ

*ЧНК Президиумĕн черетлĕ ларăвĕн кун йĕрки: Конгресс çинчен кĕнеке кăларасси, Чăваш Республикин «Вĕренÿ çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси тата ытти тĕрлĕ ыйту.*

ЧНК президенчĕ Николай Угаслов пĕрремĕш ыйтăва тĕплĕн сÿтсе явма ыйтрĕ. Çитес çул Чăваш наци конгресне туса хунăранпа чĕрĕк ĕмĕр çитет. Халĕччен темиçе кĕнеке те тухнă пулсан та, ку çавра çула халалланăскерне тата та анлăрах, пур япалана та шута илсе кăлăпламаллине аса илтерчĕ Николай Федорович. «Йĕркелесе

янăранпа Конгресс сахал мар пархатарлă ĕç тунă, çырмалли материал нумай, çавăнпа та ку пысăк ĕçе пуçарса яма ĕç ушкăнĕ туса хумалла». Канашланă хыççăн ĕç ушкăнне вун тăхăр хастара, редакци коллегине ку ĕçе пĕлекен пилĕк çынна суйласа çирĕплетрĕç (тĕп редактор – **А.П. Леонтьев** вице-президент).

Президиум кăçалхи çĕртме уйăхĕнче иртнĕ Мăн Канаш йышăнăвне пурнăçласа Чăваш Республикин «Вĕренӳ çинчен» саккунне улшăнусем кĕртес ыйтăва пăхса тухрĕ. Ку ыйтăва уçăмлатма вĕренӳ институчĕн наука сотрудникне, темиçе кĕнеке авторне **Елена Михайловăна (Енькканa)** шанчĕç. Вăл Раççейри ытти халăхсен вĕренӳ çинчен калакан саккунĕсене те шута илсе тунă улшăнусен проекчĕпе паллаштарчĕ. Президиум пайташĕсем республика Министрсен Кабинетне «Вĕренӳ çинчен» саккуна тăван чĕлхене лайăхрах вĕренме май паракан улшăнусем сĕнме йышăнчĕç.

**Алексей Леонтьев** Конгресăн иккĕмĕш ертӳçи Геннадий Николаевич Архипов çуралонăранпа 60 çул çитнине халаллансă ĕç-пуç йĕркине уçăмлатрĕ. Паллă публициста, общество деятельне Геннадий Архипова асăнса тĕрлĕ курав, анлă «çавра сĕтелсем» ирттерме палăртнă. Чылай организацие явăçтарса «Чăваш наци культурин чĕрĕлĕвĕн ертӳçисем тата вĕсен шăпи» «çавра сĕтеле» сумлă та числă иртерме шутлаççĕ гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕпе Чăваш наци конгресĕ.

«Раççей чăваш пики» конкурса хатĕрленесси епле пулса пыни çинчен **Валерий Клементьев** каларĕ. Вăл Раççейри тĕрлĕ регионтан пурĕ вăтăра яхăн пике конкурса хутшăнма кăмăл тунине, хатĕрленӳ тапхăрĕ лайăх пулса пынине пĕлтерчĕ.

ЧНК пресс-служби.
*10.11.2016.*

## «ТĔРĔСЕХ ТЕКЕН ÇУЛТАН ПАЧ ПĂРĂНМАН»

*Çапла ят панă патшалăх тата общество деятельне, Чăваш наци конгресĕн иккĕмĕш президенчĕ пулнă Геннадий Николаевич Архипова асăнса Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче уçнă сăн ӳкерчĕксен куравне.*

Шăп 60 çул каялла çĕр çине килнĕскере шăпа икĕ çул каялла пирĕнтен шелсĕр уйăрса кайрĕ. Чăн та, Геннадий Николаевич пурнăç сулĕпе тăван халăх пуласлăхĕшĕн, чăваш тĕнчин аталанăвĕшĕн тӳррĕн утнă. Çакна ку институтрах чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕсенче «Чăваш наци культура чĕрĕлĕвĕн ăс-хакăл ертӳçисем тата вĕсен тӳпи, ăраскалĕ» ятпа иртнĕ «çавра сĕтелте» те палăртрĕç.

«Вăл Чăваш Ен Патшалăх Канашĕн депутачĕ пулнă май «Чĕлхе саккунĕ» йышăннă чухне сӳтсе явнă вăхăтра вăтăр хут тухса калаçнă. Геннадий Николаевич пекки тепĕр çĕр çын пулсассăн Чăваш Енре пĕр «электростанци» тумалăх вăй çитет», – терĕ ЧНК президенчĕн çумĕ **Алексей Леонтьев** ăсчах «çавра сĕтеле» уçнă май. Вăл Чăваш наци конгресĕн президенчĕ пулнă чухне тăрăшнине пула Раççейри пур регионта та тенĕ пек чăваш наци культура автономийĕсем туса хунине те палăртрĕ Алексей Петрович.

ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕ **Валерий Филимонов** хăй депутат пулнă май Геннадий Архиповпа ĕçленĕ вăхăтсене аса илчĕ. «Чăнах та, вăл ялан хĕрӳллĕн тухса калаçатчĕ, кашни япалана чĕри патне илетчĕ... Халĕ хулара та хăюллăн чăвашла калаçнинче унăн тӳпи пысăк», – терĕ Валерий Николаевич.

Геннадий Архипов ЧНК президенчĕ чухне тăван чĕлхепе калаçакан телеканал туса хурас енĕпе чылай вăй хунине аса илчĕ Чăваш Республикин Вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ **Юрий Исаев**. «Тин кăна республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче Чăваш наци телекуравне интернет уçлăхне кăларма, урăхла каласан – спутник урлă тĕнчен пур кĕтесĕнче пăхмалли май туса пама йышăнӳ тунине каларĕ. Çак пархатарлă ĕç – Геннадий Архиповăн ĕмĕтне пурнăçлани», – терĕ Юрий Николаевич. Аса илмелли Геннадий Архиповпа шкулта пĕр класра вĕреннĕ **Владимир Ивановăн**, хальхи вăхăтра Чăваш патшалăх педагогика университечĕн ректорĕ пулса ĕçлекенĕн те питĕ нумай. Вăл юлташĕ ачаранах ырă кăмăллă, тăван халăх историйĕпе кăсăкланакан, ытлашши алхасман, çав вăхăтрах питĕ вăр-вар ача пулнине аса илчĕ. Вĕсен класĕнчен пĕр япăх çын та тухманнипе мăнаçланнине те пытармарĕ. «Вăл мана Геннадий Волков этнопедагогпа паллаштарни манăн пурнăçа пач урăх енне улăштарчĕ», – терĕ Владимир Иванов аса илӳ çăмхине сӳтнĕ май.

ЧНК иккĕмĕш президенчĕ Геннадий Архипов çуралнăранпа 60 çул çитнине асăнма пуçтарăннисен умĕнче Чăваш Республикин Культура, национальноçсен тата архив ĕçĕн министрĕн çумĕ **Вячеслав Оринов** та тухса калаçрĕ. Чăваш наци конгресĕн лавне ун чухне туртса пыма мĕнле йывăр пулнине, анчах та чăвашлăхшăн Геннадий Николаевич капашсăр пысăк ĕç туса хăварнине асăнчĕ вăл.

Геннадий Николаевича аса илсе **Николай Егоров** ăсчах та нумай ырă сăмах каларĕ. «Кĕлеткепе пысăках пулман пулсан та чунĕ пысăкчĕ унăн», – терĕ вăл икĕ çул каялла вăхăтсăр уйрăлса кайнă юлташĕ çинчен. «Мĕншĕн пирĕн чунра чăвашлăх чунĕ сук, чăваш интеллигенцийĕ мĕншĕн халĕ те чăмăртанаймасть?», – акă мĕн пăшăрхантарать Николай Ивановича. Ку енĕпе вăл çитес вăхăтра чăваш интеллигенцийĕн анлă пухăвне иртерме сĕнчĕ.

Етĕрне районĕн пуçлăхĕ пулнă **Леонид Софроновăн** ентешĕпе çыхăннă аса илӳ питĕ нумай. ЧНК президенчĕн пĕрремĕш çумĕ **Валерий Клементьев** та Етĕрне тăрăхĕнченех. Вăл Геннадий Николаевичăн юлашки çулĕсене тишкерчĕ. Уншăн вăл вĕрентекен пулнине, унăн ырă енĕсене ăша илнине каларĕ.

Чăваш наци культура чĕрĕлĕвĕн ертӳçисенчен пĕрне Геннадий Николаевич Архипова аса илме пуçтарăннă «çавра сĕтелте» чăвашлăхпа çыхăннă тĕрлĕ енлĕ тишкерӳ пулчĕ. Вăл шутра **Владимир Иванов** профессор чăвашсемпе нимĕçсен культура хутшăнăвĕсем çинчен каласа пани те, Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн пайташĕ **Геронтий Никифоров** чăваш чĕлхин паянхи тăрăмĕ çинчен пĕлтерни те.

«ЧНК политика партийĕ мар, унăн идеологийĕ – чăвашлăх, апла тăк пирĕн алăксем пуриншĕн те яланах яри уçă», – тенĕ хăй вăхăтĕнче Геннадий Архипов. Вăл каланине тĕпе хурса ĕçлесе пырать те ĕнтĕ халĕ Николай Угаслов ертсе пыракан сумлă тытăм.

Зоя ЯКОВЛЕВА.
*ЧНК сайчĕ, 30.11.2016.*

## ЧĂВАШ ЕН ХАСТАР ЫВĂЛНЕ ÇАВРА ÇУЛПА САЛАМЛАРĔÇ

*Раштавăн 19-мĕшĕсенче Чăваш наци библиотекинче Петр Васильевич Ивантаева 75 çулхи юбилейпа саламларĕç*

Патшалăх тата общество паллă деятельне, ЧНК президенчĕн çумне, республикăри АПК ветеранĕсен пĕрлĕхĕн ертӳçине Петр Ивантаева сумлă кунпа саламлама Чăваш Республикин Пуçлăхĕ **Михаил Игнатьев**, Раççей Федерацийĕн Федераци Канашĕн членĕ **Вадим Николаев**, ЧР Патшалăх Канашĕн ертӳçи **Валерий Филимонов**, ЧНК президенчĕ **Николай Угаслов** тата сумлă ытти çынсем, тус-юлташĕсем пуçтарăннă.

«Сире çавра çулпа саламлама пултарни – маншăн пысăк чыс. Эсир тăван çĕре чунтан юратни, çынсен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшни, Чăваш Ене аталантарассишĕн чылай ĕç туни пуриншĕн те ырă тĕслĕх», – терĕ Михаил Игнатьев. Чăваш Республикин ял хуçалăх комплексне аталантарас тĕлĕшпе чылай çул тăрăшнăшăн тата общество ĕçне халĕ те хастар хутшăннăшăн Михаил Игнатьев Петр Ивантаева «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орденпа чысларĕ. Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Николай Угаслов Петр Васильевича наци юхăмне мĕн Конгресс йĕркеленĕренпех хастар хутшăннăшăн, халĕ те ЧНК ĕç-хĕлне йĕркелесе пыма пулăшнăшăн тав турĕ. Хăй енчен тата ЧНК хастарĕсен ячĕпе чăвашăн маттур ывăлне ырлăх-сывлăх, телей сунчĕ.

Петр Ивантаев ячĕпе уявра ăшă салам сăмахĕсем питĕ нумай пулчĕç.

Наталья ТАРАСОВА.
*ЧНК сайчĕ, 20.12.2016 .*

## ПАЛЛĂ ЖУРНАЛИСТ, ТĔПЧЕВÇĔ ТАТА ОБЩЕСТВО ДЕЯТЕЛĔ АЛЕКСЕЙ ЛЕОНТЬЕВ 60 ÇУЛ ТУЛТАРЧĔ

*Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче 2016 çулхи раштав уйăхĕн 28-мĕшĕсенче «Мифология чувашей: истоки, эволюция и культурные взаимосвязи» кĕнеке хăтлавĕ иртрĕ. Ăна Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ **А.П. Леонтьев** 60 çул тултарнине халалларĕç.*

Институтăн лару залне ăсчахсем, вĕрентекенсем, журналистсемпе культура ĕçченĕсем пуçтарăнчĕç. Чăваш наци конгресĕн хастарĕсем Алексей Петровича çавра çулпа саламлама чылайăн килсе çитрĕç: Конгресс президенчĕн пĕрремĕш çумĕ **Валерий Клементьев**, президент çумĕ **Петр Ивантаев**, «Чăваш ялĕ» комитет председателĕ **Эдуард Бахмисов**, Президиум пайташĕ **Николай Лукианов**...

Савăнăçлă лару-тăрура «çавра сĕтеле» гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн директорĕ **Петр Краснов** уçрĕ. Вăл кĕскен Алексей Петровичăн ĕçлĕ кун-çулне тишкерчĕ, çирĕм çул ытла чăвашсен тĕп хаçатне «Хыпара» ăнăçлă ертсе пыма çакнашкал хăюллă та анлă тавра курăмлă ертÿçĕ кăна пултарнине асăнчĕ. «Пирĕн институтра вăл çĕнĕ тапхăр пуçларĕ, наукăшăн, историшĕн, этнологи программишĕн тăрăшса ĕçлет. Халĕ вăл тата чăваш мифологине тĕпчет», – терĕ институт ертÿçи.

«Çĕн йĕркелÿ тапхăрĕнче Алексей Петрович республика пурнăçне кăкăрпа сирсе, чавса кĕрсе кайрĕ темелле. Калама çук çивĕч статьясем çыратчĕ вăл, халĕ те çав шăнăр пур унра», – палăртрĕ **Петр Ивантаев**, хăй вăхăтĕнче «Хыпар» чи вуланакан хаçат пулнине, Чăваш наци конгресĕнче те Алексей Леонтьев мĕн пуçланнăранпах чи хастарри, халĕ те обществăлла майпа президент çумĕ, массăллă информаци хатĕрĕсемпе ĕçлекен комитет пуçлăхĕ пулнине асăнчĕ.

Культура министрĕн çумĕ **Вячеслав Оринов** сумлă юбиляр çырнă кĕнекесенче пурнăç тĕшши пуррине, кирлĕ, усăллă шухăшсем нумаййине, вăл хăй те çак кĕнекесене тĕплĕн вуласа пурнăçра усă курнине каларĕ. Вячеслав Николаевич чăваш халăхĕн пуласлăхĕшĕн хăватлă ĕçсем тунăшăн Алексей Леонтьева ЧР Культура министерствин Хисеп хутне парса чысларĕ.

Гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн тĕп наука сотрудникĕ **Виталий Иванов** пухăннисен умĕнче сумлă юбиляр икĕ çул хушшинче института мĕнлерех наука тишкерĕвĕсем туни, чăваш мифологине еплерех анлăн тĕпчени çинчен каласă пачĕ.

Тĕплĕнрех Алексей Петрович Леонтьевăн наука ĕçĕсен кăтартмăшне истори наукисен кандидачĕ **Георгий Матвеев** пухса хатĕрленĕ. Йăлана кĕнĕ пек ăна институт брошюра туса кăларнă.

Чăваш наци конгресĕн президенчĕн пĕрремĕш çумĕ **Валерий Клементьев** сумлă юбиляр Конгресс ĕç-хĕлне пуçĕпех парăннă, чăваш халăхĕн пуласлăхĕшĕн пурăнакан çын пулнине асăнчĕ. Çитес çул ЧНК йĕркеленĕренпе чĕрĕк ĕмĕр çитет. Çавна май ЧНК Президиумĕ йышăннă тăрăх сумлă кĕнеке кăлармалла. Паллах, Чăваш наци конгресĕн историне, кун-çулне Алексей Петрович пек лайăх пĕлекенни, документсене сыхласа усраканни никам та çук. Валерий Клементьев Конгресс ĕç-хĕлĕ çинчен каласа паракан сумлă кĕнеке кăларассине Алексей Леонтьева кăна шанса панине каларĕ. «ЧНКн «Чăваш тĕнчи» хаçатне те миçе çул ĕнтĕ Алексей Петрович редакцилесе тăрать, çавăншăн та ăна пысăк тав», – терĕ Валерий Клементьев юбиляра парнелĕх чăваш тĕррилле кĕпе пана май.

Сумлă çавра çулне паллă тăвакан журналист, тĕпчевçĕ тата ăсчах çинчен чылайăн тухса калаçма кăмăл турĕç. Пурте Алексей Петровичăн анлă тавра курăмне, ĕçченлĕхĕпе тĕплĕн ĕçлеме пултарнине асăнчĕç. Кирек мĕнле ĕç шанса парсан та вăл ăна яваплăха туйса, халăхшăн тăвать. Ĕмĕрне чăваш журналистикине панă, халĕ наука ĕçне пуçĕпех кÿлĕннĕ юбиляр Алексей Леонтьев пурне те чунтан, таса кăмăлпа калаçнăшăн, унăн пултарулăхри ĕçĕсене пысăк хак панăшăн тав турĕ.

Зоя ЯКОВЛЕВА, ЧНК пресс-службин ертÿçи.
*29.12.2016.*

## ЧНК 25 ÇУЛ ТУЛТАРАТЬ...

*Конгресс Президиумĕн кăçалхи пĕрремĕш ларăвĕн кун йĕркине чылай ыйту кĕртнĕ. 2017 çулхи ĕç планне çирĕплетесси, унпа пĕрлех ЧНК çавра çулне паллă тăвасси, Конгресс йĕркелекен чăваш тумĕн конкурсĕ...*

**Николай Угаслов** президент ларăва ертсе пынă май пĕрремĕш ыйтупа ĕçтăвком председательне **Валерий Клементьева** сăмах пачĕ. «Кăçал пирĕн юбилей çулĕ пулнипе ĕç планĕ анлăланчĕ, хăйсене евĕрленчĕ. Кашни мероприятие сумлă çак пулăмпа çыхăнтарма тăрăшрăмăр. Чи пĕлтерĕшлисем: ЧНК 25 çулне халалланă сумлă кĕнеке кăларасси, документлă фильм ÿкересси тата музей уçасси», – терĕ Валерий Леонидович.

ЧНК ĕçтăвкомĕ юбилея хатĕрленмелли ĕçсене кăрлач уйăхĕнчен пуçласах уйрăммăн палăртнă. Кунта массăллă информаци хатĕрĕсенче Конгресс историйĕ, ăна туса хурас ĕçре вăй хунă хастарсем, регионсенчи чăваш автономийĕсен ертÿçисем çинчен каласа паракан передачăсем, интервьюсем йĕркелесси, хаçатсенче аса илÿ статйиисем пичетлесси тата ытти тĕрлĕ ĕç. Ăслăлăх-практика конференцийĕсем, регионсем хушшинчи тĕрлĕрен конкурс ирттерессине те çавра çулпа çыхăнтарасшăн.

ЧНК çинчен кĕнеке кăларас ĕçе йĕркелесе пыма массăллă информаци хатĕрĕсемпе ĕçлекен комитет ертÿçине, Конгресс президенчĕн çумне **Алексей Леонтьев** журналиста, ăсчаха шанса панă. Вăл Президиум пайташĕсене ку ĕç мĕнле пулса пынипе кĕскен паллаштарчĕ.

ЧНК кун-çулĕ çинчен документлă фильм ÿкерес ыйтăва пресс-служба ертÿçи **Зоя Яковлева** уçăмлатрĕ.

«Чăваш тумĕ – халăх пуянлăхĕ» регионсен хушшинчи конкурс çинчен **Зинаида Воронова** ăнлантарса пачĕ.

– Тумалли ĕç питĕ нумай, паян палăртнă ĕçе ырана хăварас марччĕ, – терĕ Николай Угаслов ларăва пĕтĕмлетнĕ май.

ЧНК пресс-служби.
*20.01.2017.*

## ПИРĔН ЧЫС, ПИРĔН МУХТАВ!

– Кам вăл сирĕншĕн Николай Угаслов, – Хулаçырми ялне пырса кĕрсенех ыйтрăм çак ял администрацийĕн пуçлăхĕнчен Сергей Салифановран.

– Николай Федорович вăл – пирĕн чыс, пирĕн мухтав, – пĕр кĕттермесĕр хуравларĕ Сергей Ананьевич. – Яла чăваш артисчĕсем килсен ăна тав туса пĕтерейместĕ. Ĕçленĕ, тăрăшнă, вăй хунă пирĕн ентеш, çавăнпа ырă ята тивĕçнĕ те. Çуралнă ялта тăтăшах пулать, çывăх тăванĕсем тахçанах çук пулин те хăйсене пурнăç панă сăвапла çĕре манса каймасть. Чунĕ калама çук ырă унăн, сăмахĕ уçăмлă та çирĕп.

...Николай Федорович Угаслов паян каллех хăйĕн тăван Хулаçырми ялĕнче. Йăлана кĕнĕ тăрăх хальхинче те вăл Юхлă шывĕн сылтăм енчи çÿллĕ сăрчĕсем çине васкать.

Аса илмелли, шухăшламалли вара Николай Федоровичăн чăнах та сахал мар.

Амăшĕ Елена Игнатьевна каласа хăварнă тăрăх – унăн аслашшĕ çирĕм пилĕк çул патша çарĕнче пулнă, яла капрал пулса таврăннă. Ашшĕ вара, Федор Михайлович, чăн-чăн çĕр ĕçченĕ тата столяр-платник, урапа-çуна, ут таврашĕ ăсталанă. 1904 çулта çуралнăскер Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче çапăçнă, унтан йывăр аманса таврăннă. Унăн аслă пиччĕшĕ Петĕр вăрçă хирĕнче паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ, кĕçĕнни Çемен ашшĕ пекех йывăр аманнă.

Шел, нумаях пурăнаймасть йывăр суранланнă Федор Михайлович, 1953 çулта, çур ĕмĕре те çитеймесĕр (чи кĕçĕн ывăлĕ Микулай иккĕ те тултарман ун чухне) йывăр чирлесе çĕре кĕрет. Амăшĕ пысăк киллĕ йышпа (çемьере пурĕ çичĕ ача) пĕччененех тăрса юлать.

– Темле йывăр пулсан та аптраман пулĕ çав, – аса илет паян Николай Федорович. – Юхлă шывĕнче сĕрекепе пулă тытаттăмăр. Çавă

та апат-çимĕç ыйтăвне татса пама пулăшнах ĕнтĕ. Çурчĕ пирĕн мухтанмаллиех марччĕ. Хăй вăхăтĕнче асатте тулли пурнăçпа пурăннă. Çырма хĕрринче улма-çырла сачĕ ĕрчетнĕ. Кулаках пулайман пулин те колхоз тунă чух унăн пурлăхне, пĕтĕм кĕлетне туртса илнĕ, хайсене вара мунчара çеç хăварнă. Шăпах çавăнта çуралса ÿснĕ эпир. Анне яланах: «Атя-ха, Хветĕр, йĕркеллĕ çурт лартар», – тенĕ иккен. Ăçта унта! Вăрçă хыççăнхи çулсенче ун çинчен ĕмĕтленме те май килмен. Çапах та ĕмĕтне çухатман аттем. «Ĕлкĕрĕпĕр, ачасем ÿссе пулăшакан пулччăр-ха, тен, хăшĕ те пулин хам пекех пуртă ăсти пулĕ, вара çĕнĕ çурт та çавăрăпăр», – тесе калатчĕ тет.

Амăшĕн çак аса илĕвĕсем Микулайăн чĕрине пăчăртаса илетчĕç. Унăн пĕр вăхăтрах пуртă ăсти те, кăмака ăсти те, машин-трактор ăсти те пулас килетчĕ. Амăшĕ мĕнлерех асапланнине курса вăл ăна лăплантарма тăрăшатчĕ: «Ан кулян, анне, кăштах ÿссен çурт туса паратăпах сана», – тетчĕ.

Ачаранах ĕçе кÿлĕнчĕ вăл. Улттăра чухнех вун пилĕк çухрăмри пĕр пĕчĕк ялта çур уйăх ытла ача пăхрĕ, çавăншăн ăна пĕр мăшăр кăçат парса тав турĕç.

Ĕçлеме кăна мар, лайăх вĕренме те тăрăшнă Микулай. Киле панă ĕçсене вăл шкултах, тăхтав вăхăтĕнчех тума хăнăхнă. «Вĕренместĕнçке эс, ывăлăм, – пăшăрханнă амăшĕ, – санăн вĕренмелле, унсăрăн çын пулаймастăн». «Вĕренетĕп, анне, килти ĕçсене эпĕ шкултах туса хунă, акă кур, дневникра та, тетрадьсенче те «тăваттăпа» «пиллĕк» паллăсем кăна манăн», – тавăрнă ывăлĕ. Çапла, чи лайăх вĕренекенсен шутĕнче пулнă Микулай. Уйрăмах математикăна, физикăна, химие килĕштернĕ. Общество ĕçне хастар хутшăннă, шашкă-шахмăтла выляса районти олимпиадăсенче мала тухнă, Акатуйра лашапа чупса пĕрре кăна мар çĕнтерÿçĕ пулнă.

Ялти сакăр креслă шкултан вĕренсе тухсан йĕкĕт Шупашкара çул тытнă. Экзаменсене ăнăçлă тытса строительство техникумне вĕренме кĕнĕ. Тĕрĕссипе, техникумăн çĕнĕ çуртне те, общежитисене те тин çеç вĕренме кĕнĕ студентсем тунă. Хăйне евĕрлĕ диплом ĕçĕ пулса тăнă вĕсемшĕн çак çуртсене çĕклени.

Питĕ лайăх вĕренсе тухнă хыççăн Николай Угаслова Саранскри çурт-йĕр тăвакан комбината ĕçлеме яраççĕ. Кунта çур çул ытларах мастерта тăрăшнă хыççăн Совет Çарне службăна илсе каяççĕ. Мускав çар округĕнче, Тула хули çывăхĕнче, хĕсметре тăрать. Служба вĕçленсен каллех юратнă Шупашкара çул тытать, кунти çурт-йĕр комбинатне монтажника вырнаçать. Ĕçе тĕплĕ тума, хăйĕнчен те, ыттисенчен те çирĕп ыйтма хăнăхнăскер, карьера пусми тăрăх питĕ хăвăрт хăпарать Николай Федорович.

Çак çулсенче тахçан амăшне панă сăмаха та чыслăн пурнăçларĕ Николай Федорович – хăйĕн çывăх тăванĕсемпе пĕрле ун валли пысăк та тирпейлĕ çурт туса пачĕ. Елена Игнатьевна Хулаçырминчен куçса кайса Чĕмпĕр çывăхĕнчи Баратаевка ялĕнче пурăнатчĕ ĕнтĕ – çавăнта çĕнĕ йăва çавăрма тиврĕ. Çĕнĕ çурт ĕçкинче амăшĕ ывăлĕ çине пăхрĕ те ăшшăн çапла каларĕ: «Пĕчĕк чух ахалех ятланă пулмалла эпĕ сана, ÿссе çитсе чăн-чăн çын пултăн, пура пурама та, кирпĕч хума та лайăх вĕренсе çитрĕн. Телейÿ, сывлăху пултăрччĕ кăна малашне...»

Пил халалĕ пек туйăнаççĕ паян амăшĕн çак сăмахĕсем. Хăй вăл çирĕм çул каярахах çĕре кĕнĕ ĕнтĕ, анчах ывăлне ырă сунни, ăшă сăмахсем каласа хăварни Николай Федоровича кашни кунах пулăшса пынăн туйăнать.

Ĕçленĕ вăхăтрах Чăваш патшалăх университечĕн строительство факультетĕнчен вĕренсе тухрĕ вăл, инженер-строитель дипломне алла илчĕ.

Вăл ертсе пынă строительствăпа монтаж управленийĕ Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче мĕн чухлĕ завод-цех, çĕнĕ çурт, ача сачĕ, ытти йышши социаллă объект туса лартнине каласа та пĕтереймĕн. Тĕп хулари Çĕнĕ Кăнтăр, Кăнтăр-Хĕвел анăç, Çурçĕр-Хĕвел анăç микрорайонĕсенчи нумай-нумай çĕнĕ урам, пурăнмалли квартал ÿссе ларнинче Николай Угасловпа унăн строителĕсен тÿпи калама çук пысăк.

...1988 çул. Раштав уйăхĕ. Унччен Совет Союзне кĕнĕ республикăсенчен пĕринче – Арменире – çут çанталăк кÿнĕ инкек – çĕр чĕтренни – темиçе хулапа яла тĕппрен аркатать. Çĕн йĕркелÿ çулĕ çине тăнă совет çĕр-шывĕ кар тăрса туслă халăха пулăшма çĕкленет. Шупашкарти çурт-йĕр комбиначĕ те пăрăнса юлмасть. Унта та эрменсене васкавлă пулăшма оперативлă штаб туса хураççĕ, ăна ертсе пыма Н.Ф. Угаслова шанаççĕ. Вăл ертсе пынипе çулталăк хушши чăваш строителĕсен бригадисем, пĕрне пĕри улăштарса, Арменире ĕçлеççĕ, комбинат вĕсене кирлĕ материалсемпе, механизмсемпе, пурăнмалли вакунсемпе вăхăтра тивĕçтерсе тăрать. Унсăр пуçне Николай Федорович хăй те çур çул Арменире вăй хурать.

Мĕн тери тав тумарĕç пуль вырăнти çынсем чăваш строителĕсене! Николай Федоровича медаль те панă хастар ĕçленĕшĕн.

– Медалĕ-мĕнĕ, – тет вăл паян çав кунсене аса илсе, – аякри туссем валли хăтлă çуртсем туса хăвартăмăр, çавă паха. Унтан тата туслăх вăйĕ мĕнлерех хăватлă пулнине лайăх туйса илтĕм. Мĕнле кăна наци çынни пулăшмарĕ-ши эрмен халăхне?! Вĕсен туслăх туйăмĕ çилпе вĕçмерĕ, темиçе хулана, вун-вун яла çĕнĕрен çĕкленме, эрменсен хурлăхне хăвăртрах сирсе яма пулăшрĕ. Туслăх пысăк инкеке çĕнтерчĕ.

...1992 çул. Тин çеç Армениерен таврăннă Николай Федорович тарăн шухăша путать. Совет Союзĕ арканнă хыççăн Чăваш çĕр-шывĕнче те пурнăç тĕпренех улшăннă иккен. Каллех прорабран пуçламалла-и? Аптранă енне çурт-йĕр комбиначĕн пуçлăхĕпе А.Н. Афимьинпа канашласа пăхма шутлать. «Хам та пĕлместĕп. Саккассем куллен кун сахалланса пыраççĕ. Малашне мĕн пуласса Турă кăна пĕлет. Нимĕнле канаш та пама пултараймастăп», – тет ăна Альберт Николаевич. – Тен, хăвăн фирмуна йĕркелĕн? Ăнлансам, пурнăç тĕпрен улшăнчĕ, тăванăм. Унччен текех нихăçан та çаврăнса çитес çук».

Çак калаçу хыççăн Николай Федорович хăйĕн канăçне йăлтах çухатать. Акционер обществи туса хурсан? Анчах малтанхи капитал самаях кирлĕ-çке-ха. Тăрăшса пăхсан? «Жигули» автомобиль пур, икĕ телевизор, икĕ холодильник, Атăл леш енче пысăках мар дача... Çавсене сутсан? Шутланă – тунă. Хăйĕн шанчăклă вун икĕ çыннине пуçтарса акционерсен хупă обществине йĕркелеме документсем хатĕрлет. «Ятне мĕнле парăпăр?» – ыйтаççĕ унран. «Паллах – «ТУС», – пĕр иккĕленмесĕр каласа хурать Н. Угаслов, çак сăмахăн асамлă вăйне хăй темиçе хут та тĕрĕслесе пăхнăскер. Йывăрпа пулин те çĕнĕ обществăна регистрацилеме май килет. Туслă ушкăн çавăн хыççăнах Мускав çывăхне ĕç шырама тухса каять. «Ĕçчен çынран ĕç хăрать», – теççĕ чăвашсем. Вĕсем те ăнăçлă килĕшÿ туса панель çуртсем тума пуçлаççĕ, пуç çĕклемесĕр тенĕ пек тĕплĕн ĕçлеççĕ. Купавна поселокĕнче вĕсем, сăмахран, Тинĕс-çар флочĕн госпиталĕсем валли тăхăр хутлă пилĕк çурт туса лартрĕç. Каярах унта ĕçлесе илнĕ укçапа Лапсар поселокĕнче ятарлă база, тĕрлĕ техника туянчĕç. Кайран каллех Мускавра та, Чулхулара та, Тольяттире те хĕрсех ĕçлерĕç.

Паян вĕсем ытларах Шупашкарта. «ТУС» компанин строительствăра кирлĕ мĕн пур йышши техника çителĕклĕ. Хальхи вăхăтра компани – Шупашкарăн Çурçĕр-Хĕвел анăç районĕнчи «Университет» микрорайонĕн генеральнăй подрядчикĕ.

Ырă кăмăллă, сăпайлă, панă сăмаха çирĕп тытакан, пурне те пулăшма тăрăшакан Николай Федорович общество ĕçне те хастар хутшăнать. 2003 çул вĕçĕнче Чăваш Республикинче пурăнакан Тутарстан чăвашĕсем ăна ентешлĕх пуçлăхне суйларĕç.

2009 çулта Н.Ф. Угаслова Чăваш наци конгресĕн вице-президентне, каярах президентне суйларĕç. Ăна, пĕтĕм çĕр-шывĕпе палăрнă çынна, Раççейри «Наци мухтавĕ» Ыр кăмăллăх фончĕ Мухтавăн ылтăн

орденĕпе наградӑларĕ. Çак наградӑна Николай Федоровича Мускаври Çăлакан Христос чиркĕвĕнче чаплӑ лару-тӑрура пачĕç.

«ТУС» акционер обществин генеральнӑй директорĕн пуçарӑвĕпе Тутарстанри Аксура, Çĕпрелте тата Теччĕ районĕнчи Кӑнна Кушкинче чӑвашсен пĕрремĕш Халӑх поэтне Николай Полоруссов-Шелепие, Социализм Ĕçĕн Геройĕн ятне икĕ хут панӑ Петр Дементьева тата чӑвашсен Аслӑ вĕрентекенне Иван Яковлева асӑнса чаплӑ палӑксем лартнӑ.

Пархатарлӑ ĕçсемшĕн Н.Ф. Угаслова «Чӑваш Республикин культурӑн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», «Чӑваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ» хисеплĕ ятсем парса чысларĕç. 2001 çултанпа – Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашĕн депутачĕ. Хӑйĕн тӑван ялне тĕпрен çĕнетсе улӑштарма пулӑшнӑшӑн «Хулаçырми ялĕн хисеплĕ гражданинĕ» пулса тӑчĕ.

Унсӑр пуçне тата пархатарлӑ тепĕр ĕç валли те вӑхӑт çитерет Николай Федорович. Шупашкарти Гузовский урамĕнче «Нарспи» клуб ĕçлет, унта ачасен «Сарпике» ансамблĕ хӑйĕн ташӑ-юрӑ ӑсталӑхне туптать. Çав ансамбле Ирина Евсеевна Угаслова – Николай Федоровичӑн мӑшӑрĕ – ертсе пырать. Ирина Евсеевна тӑрӑшнипех «Пĕр тӑван Малинасем» вокал ансамблĕ йĕркеленнĕ. Унта Ирина Евсеевнӑпа унӑн йӑмӑкĕсем Еленӑпа Лидия юрлаççĕ. Çак ушкӑн çĕршыври нумай-нумай хулапа яла çитсе курнӑ, çынсене хӑйсен хӳхĕм юррисемпе савӑнтарнӑ.

Паян Николай Угаслов 65 çул тултарать. Паллӑ пулӑмпа ентешĕмĕре чун-чĕререн саламлатпӑр.

Порфирий АФАНАСЬЕВ, Чӑваш халӑх поэчĕ.
*«Хыпар», 8.02.2017.*

## ЧЕРЕТЛĔ ЛАРУ

*ЧНК Президиумĕн пуш уйӑхĕн 16-мĕшĕнчи ларӑвĕнче ЧНКн юбилей кĕнекине кӑларас, регионсен хушшинчи «Чӑваш тумĕ – халӑх пуянлӑхĕ», «Кĕмĕл cacă» фестиваль-конкурссен хатĕрленӳ ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен калаçрĕç.*

Редакци коллегийĕн ертӳçи **А.П. Леонтьев** икĕ уйӑхра материал пухассипе мĕнле ĕçсем туни çинчен каласа пачĕ, малашне еплерех ĕçлеме палӑртнипе паллаштарчĕ. Редколлеги пайташĕ **В.П. Иванов** ӑсчах кĕнекене икĕ томпа кӑлармаллине, техника, дизайн тĕлĕшĕпе тумалли ĕçсене уçăмлатрĕ.

– Ĕçе планласа тумалла. Чи малтан тӑкакене шутламалла, ун валли укçа тупмалла, тираж палӑртмалла тата ытти те, – çирĕплетрĕ ЧНК президенчĕ **Николай Угаслов**.

ЧНК пресс-службы.
*17.03.2017.*

## ЧӐВАШ АКАТУЙНЕ – БАЙКАЛ ХĔРРИНЕ

*Иртнĕ çул Пĕтĕм чӑвашсен Акатуйĕ пĕрремĕш хут Крымра иртрĕ. Кӑçал Байкал хĕррине çитесшĕн, чӑваш юрри-ташшине Иркутскра кĕрлеттересшĕн.*

Çуралса ӳснĕ кĕтесĕнчен пин-пин çухрӑмра пурӑнакан йӑхташсемшĕн Шупашкарта тĕл пулассипе – пысӑк савӑнаç, телей. Çавӑнпа вĕсем кашни çуркунне тӑван хутлӑха вĕçсе килекен кайӑксем пекех май тупӑнса кунта туртӑнаççĕ. Акӑ хальхинче те Чӑваш наци конгресĕпе ЧР Культура министерствин пуçарӑвĕпе йĕркеленĕ икĕ мероприятие – чӑваш халӑх тумĕн уявне тата чӑваш эстрадин «Кĕмĕл cacă» фестиваль-конкурсне – тулли кӑмӑлпа килсе çитрĕç. Çав витĕмпе наци культура пĕрлĕхĕсен ертӳçисемпе тĕл пулса калаçма та меллĕ пулчĕ. Унта ЧР культура министрĕ **Константин Яковлев**, РФ Патшалӑх Думин депутачĕ, Раççейри федерации чӑваш наци культура автономийĕн президенчĕ **Леонид Черкесов**, Чӑваш наци конгресĕн президенчĕ **Николай Угаслов**, Чӑваш Ен халӑхĕсен Ассамблейин председателĕ **Лев Кураков** хутшӑнчĕç.

Чӑваш патшалӑх филармонийĕнче иртнĕ «çаврa сĕтеле» **Константин Яковлев** уçрĕ. Унӑн шухӑшĕпе – çакӑн пек тĕл пулусем питĕ кирлĕ: йӑхташсен кӑмӑлне, ĕçлес хастарлӑхне çĕклеме те, тӑван чĕлхепе культурӑна, йӑла-йĕркене упраса хӑварма та, хутшӑнусене çирĕплетме те. Сӑмах май, Константин Геннадиевич хӑй вӑхӑтĕнче ЧНКн диаспорӑпа ĕçлекен вице-президенчĕ пулнӑ, çак тытӑмри çивĕч ыйтусене никамран лайӑх пĕлет. Çавӑнпа Культура министерстви те наци культура пĕрлĕхĕсемпе çывӑхрах пулмаллине, вĕсен çивĕч ыйтӑвĕсене пĕлсе тӑмаллине, татса пама пулӑшмаллине хӑйĕн тивĕçĕ тесе шутлать.

**Леонид Черкесовӑн** шухӑшĕпе – чӑвашсене упранса юлма тата аталанма пĕр шухӑшлӑ пулни пулӑшĕ. Тата ку енĕпе çине тӑрса ĕçлени. Грантсене тивĕçмешкĕн проектсем çырма сĕнчĕ, вĕсене пурнӑçа кĕртме май килнĕ тарӑн хӑй те пулӑшма шантарчĕ, Чĕмпĕрсен наци культура автономийĕ лайӑх ĕçленине палӑртрĕ. Çĕр-шывӑн тĕп хулинчи чӑваш вырсарни шкулĕ ячĕпе ырӑ сӑмахсем каларĕ. Çывӑх вӑхăтра пурнӑçламалли ĕçсенчен пĕри – Мускавра Иван Яковлевӑн палӑкне лартассипе çыхӑннӑ ыйту – çинче чарӑнса тӑчĕ.

**Николай Угаслов** ЧНК пуçарӑвĕпе пурнӑça кĕнĕ ĕçсене аса илчĕ. Кӑçал Чӑваш наци конгресне йĕркеленĕренпе 25 çул çитет. Чĕрĕк ĕмĕрте пурнӑçланӑ ĕçсене пĕтĕмлетекен кĕнеке кӑларасси – тĕп ĕçсенчен пĕри. Регионсене тухса çӳресси те пĕлтерĕшлĕ. «Иртнĕ çул Пĕтĕм чӑвашсен Акатуйĕ пĕрремĕш хут Крымра иртрĕ. Кӑçал Байкал хĕррине çитесшĕн, чӑваш юрри-ташшине Иркутскра кĕрлеттересшĕн, – терĕ Николай Федорович. – Диаспора чӑвашĕсене май килнĕ тарӑн пулӑшатпӑр.

2009 çултанпа Шупашкарта Пĕтĕм чӑвашсен Акатуйĕ иртет. 2016 çулта унта Раççей регионĕсенчен тата чикĕ леш енчен 22 пултарулӑх коллективĕ хутшӑннӑ.

Чӑваш халӑх писателĕ **Анатолий Кибеч** халӑх тумĕн курӑвĕнче чӑвашсен авалхи эстетика туйӑмĕ пысӑк пулнине, ӑна паян та тĕрĕс тытса пымаллине асӑрхаттарчĕ. «Кĕмĕл тумлӑ халӑх уринче çăпата пулман, вӑл сӑран пушмакпа çӳренĕ», – терĕ.

Хӑнасене мĕнле ыйтусем хумхантараççĕ-ха? Ульяновск облаçĕнчи чӑваш наци культура автономийĕн ертӳçи **Олег Мустаев** Лев Кураков хӑй вӑхӑтĕнче Чĕмпĕрти чӑваш шкулне çĕнĕрен чĕртсе тӑратас тĕлĕшпе тунӑ ĕçсене аса илчĕ. «Яковлев шкулĕнче Чӑваш университечĕн филиалне те уçнӑччĕ, анчах ӑна хамӑрӑн сӳрĕклĕхе пула пĕтерсе хутӑмӑр», – терĕ.

**Константин Малышев** (Тутарстан): чӑваш ачисене садикре те чӑвашлах вĕрентмелле. Халĕ вĕсем вырӑсла калаçса ӳсеççĕ, шкула кайма пуçласан тӑван чĕлхене словарьпе вĕренме тытӑнаççĕ. **Андрей Яковлев** (Крым) Тӑван çĕр-шывӑн Аслӑ вӑрçинче Севастополе хӳтĕлесе пуç хунӑ ентешсене асӑнса палӑк лартма тĕв тытнине пĕлтерчĕ. Ĕçе пурнӑçлама 2 миллион тенкĕ кирлĕ-мĕн, хальлĕхе 70 пин кӑна пухӑннӑ. Çавӑнпа пĕлтерĕшлĕ те сӑваплӑ çак ĕçе пурне те хутшӑнма чĕнсе каларĕ. **Владимир Логинов** (Тюмень) Тобольск хулинче кӑçал чаплӑ ӑсчахӑн Никита Бичуринӑн асӑну хӑмине уçма хатĕрленнине пĕлтерчĕ. Хĕвел тухӑç халӑхĕсен тĕпчевçи çуралнӑранпа кӑçал 240 çул çитет. Çавна май пысӑк мероприятисем Шупашкарта та, Питĕрте те иртĕç. Шурӑ Шупашкар вара ентешсене тепĕр хут Республика кунĕнче йышӑнĕ. Ун чухне хулара Пĕтĕм чӑвашсен Акатуйĕ иртĕ.

Надежда СМИРНОВА.
*«Хыпар», 29.03.2017.*

## ЮБИЛЕЙ КĔНЕКИ ПИРКИ

Чӑваш наци конгресĕн 25 çулне халалласа кĕнеке кӑларас ĕç малалла пырать. Çу уйӑхĕн 16-мĕшĕсенче ЧНК президенчĕ **Николай Угаслов**, унӑн çумĕсем **Валерий Клементьев**, **Петр Ивантаев**, **Алексей Леонтьев** тата редакци коллегийĕ канашлӑва пухӑнчĕç. Алексей Петрович пухӑннисене ĕç мĕнле пынипе паллаштарчĕ, кĕнеке валли пуçтарнӑ документсем çинчен кĕскен каласа пачĕ. **Материал нумай пулнипе Николай Федорович Угаслов кĕнекене икĕ пайлӑ тума, иккĕмĕшне йӑлтах регионсенчи чӑваш наци культура автономийĕсен ĕç-хĕлне халалама сĕнчĕ.** Искусствоведени докторĕ, редколлеги пайташĕ тата нумай кĕнеке авторĕ

**Алексей Трофимов** хӑй пулас кӗнекене мӗнлерех курнине пӗлтерчӗ. «Техника ыйтӑвӗсене татса панӑ хыҫҫӑн кӗнекен сӑн-сӑпачӗ, мӗнлерех документсем, статьясем вырнаҫтарасси пирки пӗр шухӑш патне ҫитмелле»,– пӗлтерчӗ ЧНК президенчӗ Николай Угаслов.

ЧНК пресс-служби.
*17.05.2017.*

## «МУРМАНСКРАН БАЙКАЛ ТАРАН» ҪУЛ ҪӲРЕВ

**Кайрӑмӑр**...

Ҫу уйӑхӗн 25-мӗшӗсенче Чӑваш наци конгресӗн президенчӗ **Николай Угаслов**, ЧР Культура, национальнӑҫсен ӗҫӗсен тата архив ӗҫӗн министрӗн ҫумӗ **Вячеслав Оринов** Конгресс хастарӗсене, тӗрлӗ регионти чӑваш наци культура автономийӗсен ертӳҫисене инҫе ҫул ҫӳреве пиллесе ӑсатрӗҫ.

Малтан пурте чӑваш патшалӑх академи драма театрӗ умӗнчи К.В. Иванов палӑкӗ умне чӗрӗ чечексем хучӗҫ, чӑваш культуришӗн, хамӑр чӗлхе аталанӑвӗшӗн малалла та хастар ӗҫлемелли ҫинчен калаҫрӗҫ.

Унтан аякри ҫула пуҫтарӑннисем автобуссене ларса Шупашкартан Мари Эл еннелле ҫул тытрӗҫ. Пӗрремӗш чарӑну – Пушкӑрт Республикинчи Пелепей районӗнчи Слакпуҫ ялӗ. Унта паллӑ поэтӑмӑр К.В. Иванов ҫуралнӑранпа 127 ҫул ҫитнине уявламалла. Малалла вара Тюмень чӑвашӗсемпе тӗл пулмалла. Чӑваш наци конгресӗн хастарӗсен «Мурманскран Байкал таран» ҫул ҫӳревӗ ҫинчен эпир пӗлтерсех тӑрӑпӑр..

**Тюмень хулинче**

Тюмень тӑрӑхӗнчи чӑваш наци культура автономийӗн ертӳҫисемпе пайташӗсем паян, ҫу уйӑхӗн 27-мӗшӗнче, «Мурманскран Байкал таран» ҫур ҫӳреве тухнисене Тюмень хулинче кӗтсе илчӗҫ.

«Тӑван» ассоциаци вырнаҫнӑ ҫуртра пире Урал тӑрӑхӗнчи чӑвашсен пӗрлешӗвӗсен ертӳҫи **Владимир Логинов**, ассоциаци ертӳҫи **Ираида Маслова** кунти чӑвашсен ӗҫ-хӗлӗпе паллаштарчӗҫ.

ЧНК президенчӗн пӗрремӗш ҫумӗ **Валерий Клементьев** кунти чӑвашсене илсе килнӗ парнесемпе чыс турӗ. Паян ҫул ҫӳревҫӗсем Тюмень хулинче курса ҫӳреҫҫӗ. Ыран кунта Акатуй иртмелле, пӗтӗм регионти чӑвашсем пуҫтарӑнса савӑнмалла.

**Тюменьри Акатуй**

«Мурманскран Байкал таран» ҫул ҫӳреве тухнисем паян Тюмень тӑрӑхӗнчи чӑвашсен ҫурхи уявне хутшӑнчӗҫ.

Вырӑнти вӑхӑтпа кӑнтӑрла, 11 сехетре, кунта тӗрлӗ куравсем ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Анат Тавда, Ярков, Исецск районӗсемпе ытти ҫӗртен килнӗ чӑвашсен «картишӗсем» хӑйсен йӑла-йӗркипе, апат-ҫимӗҫӗпе паллаштарчӗҫ.

Ҫул ҫӳреве Пенза, Саратов, Чулхула, Чӗмпӗр, Крым ҫур утравӗ, Пушкӑрт тӑрӑхӗсенчи чӑваш наци культура пӗрлӗхӗсен хастарӗсем, Чӑваш наци конгресӗн пайташӗсем тухни пирки эпир темиҫӗ хут та пӗлтернӗччӗ. Ҫӗпӗр чӑвашӗсен Акатуйне илем кӳме килнӗскерсем уява хастар хутшӑнчӗҫ.

ЧНК президенчӗн пӗрремӗш ҫумӗ **Валерий Клементьев** йӑхташсене ӑшшӑн саламларӗ. Ялан ҫапла хастар та туслӑ ӗҫлеме ӑнӑҫу сунчӗ, Конгресс президенчӗн Николай Угасловӑн тата ЧР Культура, национальноҫсен тата архив ӗҫӗн министрӗн Константин Яковлевӑн салам ҫырӑвӗсене вуласа пачӗ. Чӑвашлӑха аталантарас тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлекенсенчен чи маттуррисене Хисеп хучӗсем парса чысларӗ.

Вырӑнти фольклор ушкӑнӗсем, ЧНК культура комитечӗн пайташӗсем пуҫтарӑннӑ халӑха илемлӗ чӑваш ташши-юррипе савӑнтарчӗҫ. Акатуй уявӗн сасси мӗн каҫчен Тюмень хулинче чӑвашсем еплерех савӑнма пӗлнине палӑртса илемлӗн таврана саланчӗ.

**Красноярскри тата**...

Ҫу уйӑхӗн 30-мӗшӗнче Красноярск крайӗнчи чӑвашсем патне килсе ҫитрӗмӗр. Пире крайри чӑваш наци культура автономийӗн президенчӗ **Геннадий Храмов**, «Юманлӑх» фольклор ушкӑнӗн ертӳҫи **Светлана Барабанова**, кунти хастарсем ӑш-пиллӗн кӗтсе илчӗҫ.

Паян вара, ҫу уйӑхӗн 31-мӗшӗнче, кунти вӑхӑтпа 15 сехетре «ҫавра сӗтел» иртмелле. Каҫхине 17 сехет ҫурӑра Красноярскри педколледжра пысӑк концерт пулмалла. Ҫул ҫӳреве тухнӑ чӑваш эстрада артисчӗсем, «Телей» фольклор ушкӑнӗ кунти йӑхташсене юрӑ-ташӑпа савӑнтарӗҫ.

Ҫу уйӑхӗн 31-мӗшӗсенче Красноярскри Хаӑлхсен туслӑхӗн ҫуртӗнче «ҫавра сӗтел» иртрӗ. **Геннадий Храмов** автономи ӗҫ-хӗлӗпе паллаштарчӗ. Красноярск хулинче чӑваш общество-культура пӗрлӗхӗ 1991 ҫулта йӗркеленӗ. Пӗрремӗш председатель Юрий Елизаров пулнӑ. 2000 ҫултанпа – Геннадий Храмов. Красноярск тӑрӑхӗнче 11 пин чӑваш пурӑнать, ытти халӑхсем хушшинче йышпа 6-мӗш вырӑнта. Красноярск тӑрӑхӗнче 7 чӑваш ялӗ, 22 пултарулӑх коллективӗ, 3 чӑваш музейӗ, 2 библиотека, 1 фонотека пур. 25 ҫул хушшинче чӑваш Акатуйӗ, чӑваш чӗлхи кунӗ, Чӳкleme тата ытти уявсене ирттерессин шайӗ ӳссех пырать.

ЧНК президенчӗн ҫумӗ **Валерий Клементьев** регионсемпе малалла тата та тачӑрах ҫыхӑнса ӗҫлессине пӗлтерчӗ.

Тӗл пулу Красноярскри М. Горький ячӗллӗ педагогика колледжӗнче ЧНК хастарӗсен савӑнӑҫлӑ концерчӗпе вӗҫленчӗ.

**...Иркутскри тӗл пулусем**

Иркутскри Молчанов-Сибирский ячӗллӗ патшалӑх тӗпчев библиотекинче «Ҫӗпӗр тӑрӑхӗнче чӑваш чӗлхипе культурине сыхласа хӑварас» ятпа ҫавра сӗтел иртрӗ, унта 11 регионтан килнӗ чӑваш хастарӗсем хутшӑнчӗҫ. Культурӑна аталантарас тӗлӗшпе патшалӑх еплерех витӗм кӳнине Иркутск облаҫ администрацийӗн управлени ертӳҫи **Ольга Куриленкова** каласа пачӗ. Чӑваш Республикин культура, национальноҫсен тата архив ӗҫӗн министрӗ **Константин Яковлев** Иркутск облаҫӗпе ку енӗпе алӑ пусса килӗшӳ туни ҫинче чарӑнса тӑчӗ, Чӑваш Енри культура аталанӑвӗпе, малашнехи тӗллевсемпе паллаштарчӗ

ЧНК президенчӗ **Николай Угаслов** паянхи конференцие чӑвашлӑхшӑн ҫунакансем пуҫтарӑннин, чӑваш чӗлхине аталантарас ӗҫе ҫамрӑксене ытларах хутшӑнтармаллине, чӑваш культурине патшалӑх пулӑшӑвӗсӗр аталантарма ҫӑмӑл маррине палӑртрӗ.

Ҫак кунсенче Ҫӗпӗр тӑрӑхӗнче пурӑнакансем патне ырӑ хыпар ҫитрӗ. «Орион–телекарттӑ» пулӑшнипе кунти чӑвашсем «Чӑваш ен» наци телекуравӗн кӑларӑмӗсене курма пултараҫҫӗ. Ҫакӑн пек тӗл пулусене час-часах ирттерме калаҫса татӑлчӗҫ.

**Соглашение о сотрудничестве**

Сегодня, 2 июня 2017 года, в Министерстве культуры и архивов Иркутской области заключено Соглашение о сотрудничестве в сфере культуры между Иркутской областью и Чувашской Республикой. Подписи на документе поставили министр культуры и архивов Иркутской области **Ольга Стасюлевич** и министр культуры, по делам национальностей и архивного дела Чувашской Республики **Константин Яковлев**. На подписании присутствовали Президент Чувашского национального конгресса **Николай Угаслов**, его первый заместитель **Валерий Клементьев**, председатель автономии чувашей Иркутской области «Юлташ» **Вероника Тимофеева**.

**Иркутскра – Чӑваш культура кунӗ**

Ҫӗртме уйӑхӗн 3-мӗшӗнче Иркутск хули 356 ҫул тултарнине уявларӗҫ. Уявӑн пӗр пайӗ – чӑваш культурин кунне ирттерни. Чӑвашсем хула ҫыннисене хӑйсен юрри-ташшипе «Труд» спорт керменӗ ҫумӗнчи лапамра савӑнтарчӗҫ. Йӑхташӑмӑрсем 12 регионтан – Чӑваш Енрен, Чӗмпӗр, Саратов, Чулхула, Пенза, Тюмень, Пушкӑртстан, Томск, Ямал-Ненец автономи округӗ, Свердловскпа Кемерово, Красноярск тата, паллах, Иркутск тӑрӑхӗсенчен килнӗ.

**Вероника Тимофеева** ертсе пыракан Иркутск тӑрӑхӗнчи «Юлташ» наци культура автономийӗ тӑрӑшнипе чӑваш культурин кунӗ пуриншӗн те асра юлмалла иртрӗ. Паллах, автономи хастаррине кура Иркутск тӑрӑхӗн ертӳлӗхӗ ӑна витӗмлӗ пулӑшать.

Чӑваш Ен тата Акатуй ялавӗсене йӑтнӑ, тӗлӗнмелле илемлӗ чӑваш тумӗллӗ ушкӑн чи-чи капӑрри, илӗртӳлли. Тӑван чӗлхепе юрласа, чӑвашла ташласа уяв лапамне ҫитиех хӑпартланса утрӑмӑр. Иркутскра пурӑнакансем, хула кунне курма килнӗ хӑнасем чӑвашсене ӑшшӑн саламларӗҫ.

«Труд» спорт кермене умӗнче «чӑваш картишӗсем», тӗрлӗ куравсем ӗҫлерӗҫ.

Чӑвашсен уявне Иркутск хулин пуҫлӑхӗ **Дмитрий Бердников**, облаҫӑн саккун кӑларакан Пуху председателӗ **Сергей Брилка**, Иркутск облаҫ кӗпӗрнаттӑрӗн ҫумӗ **Владимир Дорофеев** ҫитсе курчӗҫ.

– Иркутск хулинче 100 ытла халӑх ҫыннисем пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем пурте пирӗн хула культурине пуянлатаҫҫӗ, илемлетеҫҫӗ. Ҫавсенчен чи пултарулли – «Юлташ» наци культура автономийӗ, – палӑртрӗ Дмитрий Бердников. Вӑл Николай Угасловпа Константин Яковлева ҫакӑн пек сумлӑ мероприяти йӗркеленӗшӗн чунтан тав турӗ. **Николай Угасловпа** унӑн пӗрремӗш ҫумӗ **Валерий Клементьев** Дмитрий Бердникова парнелӗх чӑваш тӗррилле кӗпе парӗҫ, Сергей Брилкӑпа Владимир Дорофеева та уяв парнисӗр хӑвармарӗҫ, чӑваш тӗррилле галстуксем тата «Чӑваш тумӗ» кӗнеке парнелерӗҫ.

Иркутск хулипе облаҫ ертӳлӗхӗнче тӑрӑшакансене чӑвашсен вӑйӑ карти кӑмӑла кайрӗ. Вӗсем темиҫе ҫаврӑм туса чӑваш вӑййин асамлӑхне туйрӗҫ.

**Байкал хӗрринче – Пӗтӗм чӑвашсен Акатуйӗ**

Тӑватӑ пин ҫурӑ ҫухрӑм хыҫа хӑварса Байкал кӳлли хӗррине ҫитнӗ Чӑваш наци конгресӗн хастарӗсем, темиҫе регионти чӑваш наци культура автономийӗсен ертӳҫисем, юрӑҫсем паян, ҫӗртме уйӑхӗн 4-мӗшӗнче, Иркутск тӑрӑхӗнче иртекен Пӗтӗм чӑвашсен Акатуйне хутшӑнчӗҫ.

Байкал кӳлли ҫывӑхӗнчи «Тальцы» архитектурӑпа музей комплексӗнче вун икӗ регионтан пуҫтарӑннӑ йӑхташсем авалтан пыракан йӑлайӗркене пӑхӑнса ака-суха ӗҫӗсене пӗтернине палӑртакан уява пуҫтарӑнчӗҫ. Иркутск тӑрӑхӗнчи чӑвашсем йышлӑн пурӑнакан Тайшет, Зима, Балаган районӗсенчен, Красноярск тата Сарӑ ту тӑрӑхӗсенчен килнӗ чӑвашсен пӗрлешӗвӗсем «чӑваш картишӗсем» йӗркелерӗҫ, хӑйсен тӑрӑхӗсенчи йӑла-йӗркепе, апат-ҫимӗҫпе паллаштарчӗҫ.

Акатуя пуҫласа яма Конгресс президентне сӑмах пачӗҫ. **Николай Угаслов** чӑвашсем инҫе ҫула пӑхмасӑр пӗрле савӑнма Байкала хӗррине ҫитме май тупнишӗн хавхаланнине палӑртрӗ, пурне те тӑван халӑхӑн пуласлӑхӗшӗн ӗҫлеме ырлӑх-сывлӑх сунчӗ.

Иркутск тӑрӑхӗнчи чӑвашсен «Юлташ» пӗрлӗхӗ облаҫри автономисен хушшинче пӗлтӗр чи лайӑх ӗҫлекен общество организацийӗ ята тивӗҫнӗ. Вӗсене уяв ячӗпе саламлас кӑмӑлпа Иркутск облаҫӗн саккун кӑларан Пухӑвӗн комитет председателӗ **Ирина Синцова**, кӗпӗрнаттӑр управленийӗн тата Иркутск облаҫӗн правительствин пуҫлӑхӗ **Ольга Куриленкова**, Культурӑпа архивсен министерствин канашҫи **Оксана Седина** та чӑвашсен Акатуйӗнче пулчӗҫ.

Аслӑ уяв кӑҫал Иркутск тӑрӑхне куҫнине палӑртса Крым Республикинчи наци культура автономийӗн ертӳҫи **Андрей Яковлев** Акатуй ялавне кунти чӑвашсен пӗрлӗхӗн ертӳҫине **Вероника Тимофеевӑна** тыттарчӗ.

**Константин Яковлев** Раҫҫей ӗн тӗрлӗ кӗтесӗнчен Акатуя пуҫтарӑннӑ йӑхташӑмӑрсене Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗн салам ҫырӑвне вуласа пачӗ, **Вероника Тимофеевӑна** Михаил Игнатьевӑн Тав ҫырӑвӗпе чысларӗ.

Иркутск хулинчи бурятсен «Улаэз» юрӑ-ташӑ ансамблӗ чӑвашсене саламласа хӑйсен илемлӗ ташшине парнелерӗ.

Уяв хӗрсе пынӑ май Шупашкартан килнӗ «Ҫеҫпӗл», Чӑваш наци конгресӗ ҫумӗнчи «Самана» ушкӑнсем, уйрӑм юрӑҫсем Акатуй хӑнасене савӑнтарчӗҫ.

Тӗлӗнмелле илӗртӳллӗ вырӑнта, Байкал кӳлли хӗрринче иртекен Акатуй ҫумӑра пӑхмасӑр хӗрнӗҫем хӗрсе пычӗ. . .

Зоя ЯКОВЛЕВА,
*ЧНК сайтӗнчен, ҫу, 25—ҫӗртме, 4.*

# В ЧЕЛЯБИНСКЕ – ДЕЛЕГАЦИЯ ЧНК

*8 июня в Доме дружбы народов Челябинской области прошла творческая встреча с представителями Чувашского национального конгресса.*

Встреча организована руководителем областного чувашского культурного центра **Сергеем Герасимовым**. На встрече присутствовали: **Артемьева Алина Петровна** – председатель Чувашской национально-культурной автономии Нижнего Новгорода, **Яковлева Зоя Аркадьевна** –руководитель пресс-службы Чувашского национального конгресса, помощник президента ЧНК по связям с общественностью, **Вражкин Александр Николаевич** – член Большого Совета ЧНК , директор издательской группы «СВ–пресс», **Зайцева Елена Алексеевна** – корреспондент газеты «Советская Чувашия», **Ларионов Николай Николаевич** – главный редактор чувашской областной газеты «Канаш» (Совет) г. Ульяновск, **Лапидус Юлия Александровна** – директор Дома дружбы народов Челябинской области, **Мохова Ольга Георгиевна** – художественный руководитель Дома дружбы народов Челябинской области.

Были рассмотрены вопросы: 1. Совместное проведение чувашских национальных праздников на территории Челябинской области Домом дружбы народов Челябинской области с Чувашским национальным конгрессом и ЧООО «Чувашский культурный центр»; 2. Оказание методической помощи Чувашским национальным конгрессом ЧООО «Чувашский культурный центр»; 3. Участие Дома дружбы народов Челябинской области в проведении национальных чувашских праздников в Республике Чувашия.

Гости привезли с собой великолепный концерт чувашской музыки с участием народного коллектива «Телей» (руководитель Наталия Арсентьева и солисты Роза Степанова, Елена Османова, Ирина Лампасова, Республика Чувашия, г. Чебоксары), Антонина Андреева (директор музея Сеспеля г.Чебоксары). Чуваши Челябинска от души слушали и танцевали под родные напевы и были рады землякам из Родины.

В конце визита делегаты из Чувашии посетили выставку известного фотохудожника, уроженца Канашского района Чувашии С.Васильева.

Из сайта Дома дружбы народов Челябинской области.
*12.06.2017.*

# ТАЙГАРИ ЧӐВАШ ЯЛӖНЧЕ

*Чӑваш наци конгресӗ йӗркеленӗ «Мурманскран Байкал таран» ҫул ҫӳревӗн чи кӑсӑклӑ саманчӗ, «эксклюзив» Иркутск тӑрӑхӗнчи тайгара вырнаҫнӑ Джогино ятлӑ чӑваш ялне ҫитсе килни пулчӗ. Красноярскран тӗттӗмленсен тухса, ҫӗрӗпе пӗр ҫывӑрмасӑр тенӗ пек автобуссемпе пыратпӑр.*

Шурампуҫ килет, ир пулать. Ҫӗртме уйӑхӗн 1-мӗшӗ. Иркутск тӑрӑхӗнчи чӑваш наци культура автономийӗн ертӳҫипе Вероника Васильевнӑпа калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх пирӗн Тайшет районӗнчи Джогино чӑвашӗсемпе тӗл пулмалла, концерт лартмалла.

Делегаци Иркутск облаҫне кӗрсенех, автобус ҫинчи навигатор пулӑшнипе Тайшет районӗнчи Джогино ялне маршут илчӗ. Ир енне сулӑннӑ ҫутӑпа нихӑҫан курман тайгаваррипе, хӗрӗхе яхӑн ҫын ларнӑ икӗ пӗчӗк автобуспа вӗҫтеретпӗр кӑна. Вак чул сарнӑ путӑк-ҫурӑк ҫулӑн вӗҫӗ-хӗрри те ҫук. Никамран ыйтма та май килмест тата. Карас телефонӗпе ҫыхӑну татӑлнӑ...
Пирӗн шофер, «ТУС» строительство компанийӗн чи лайӑх водителӗ шутланакан Евгений Андреев, ман ҫине ӑнланмасӑр пӑхкалать. Юлашкинчен чӑтаймарӗ:

– Зоя Аркадьевна, эпир тĕрĕсех каятпăр-и?
Хам та шиклене пуçларăм, тен, пач урăх çулпа кĕретпĕр, ытла та нумай вăхăт кайрăмăр-çке... Вĕçĕ-хĕрри те çук, пĕр ял та курăнмасть, тен, навигатор улталать...

Тайга варрипе чылай кайсан пире хирĕç ĕне кĕтĕвĕ хăвалаca икĕ кĕтÿç килни курăнчĕ. Урăх планета çинчи çынсене курнăнах туйăнчĕ. Кĕтÿçсем пире тĕрĕс çулпа кайнине пĕлтерчĕç. Тинех пурне те чун кĕчĕ.

Çул ик айккипе тĕлĕнмелле илемлĕ тĕттĕм сарă чечексем ешереççĕ, Çĕпĕр купальници иккен, пирĕн енче вĕсем çутă сарă, чăмакка пуç теççĕ. Ытараймасăр автобуссене чарса çак илеме чылайăшĕ татрĕ. Пурте тенĕ пек пирĕн маттур та пултаруллă юрăçа **Елена Кирилловна Османовăна** юбилейпа саламласа çак чечексен ăшне путарчĕç. Ара, унăн шăп çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче çавра çул-çке... Нихăçан та шутлама пултарайман пулĕ вăл çак паллă куна тайга варринче кĕтсе илетĕп тесе...

Ывăнса çитнĕскерсем тинех малта ял ларнине куртăмăр – Джогино. Пысăк ял, пĕтĕмпех йывăç çуртсем, умĕсене çуран çÿремелли хăма тротуар сарнă. Ял тĕлĕнмелле илемлĕ вырăнта. Юнашар Бирюса ятлă пысăк юхан шыв явкаланса выртать. Йĕри-тавра чăтлăх, тайга...

Эпĕ пĕрремĕш курнă çынранах ял клубĕнче ĕçлекен Вероника Ивановна Визе пирки ыйтатăп. Унăн пире кĕтсе илмелле-çке. Вĕсен килĕ умнех çитсе тăнă иккен эпир.

Вероника Ивановна ăшталанса пурне те килне йыхравларĕ. Акă ял çыннисем те, пире кĕтсе хăшкăлнăскерсем, пуçтарăна пуçларĕç. Пурте хăйсем патне чĕнеççĕ, мунчисене çĕрлех хутса хунă иккен пирĕн валли, кăмака хутса апат хатĕрленĕ...

Мунчисем сивĕнсе те кайма пуçланă пулсан та – ÿппĕн-теппĕн çăвăнкаларăмăр та ялти шкула тапăлтатрăмăр. Джогино клубĕ çу уйăхĕн 21-мĕшĕсенче тĕппипех çунса кайнă иккен, шалта тин çеç пире кĕтсе илме çĕнĕрен туяннă аппаратура тĕпленнĕ... Çавăнпа ял халăхĕ, ватти-вĕтти те, шкул çуртне пуçтарăнчĕ. Ара, Чăваш Енрен халĕччен ку яла никам артисчĕн ури те ярса пусман...

Çамрăк мăшăрсем икĕ-виçĕ пĕчĕк ачине çавăтса шкулалла утни чунра çирĕп шанчăк çуратрĕ. Апла Чăваш Енрен тăвату пин çухрăм ытларахра вырнаçнă йăхташăмăрсен ялĕн пуласлăхĕ пур. Ĕненес те килмест, анчах та ял пурăнать, сывлать. Мана темшĕн пĕр хушă совет саманине каялла тавăрннă пекех туйăнса кайрĕ.

Джогинора газ çук, вутăпа хутса ăшăтаççĕ, телефон операторĕсенчен «Мегафон» кăна аран-аран тыткалать. Кунти чăвашсем çемьесенче тăван чĕлхепе калаçаççĕ. Халăх ытларах çут çанталăх пуянлăхĕпе пурăнать: сунара çÿресе упа, пăши, соболь тата ытти чĕр чунсене тытать. Бирюса юхан шывĕнче осетр, уланкă, налим, хариус тата ытти хаклă йышши пулăсем туллиех. Кун çинчен мана шкулта хурал тăракан Сергей Петрович Ялтратов каласа пачĕ. Унăн аслашшĕпе асламăшĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 11-мĕш çулĕнче, Столыпин реформи вăхăтĕнче, килсе кунта пурăнма пуçланă пулсан та Сергей Петрович чăвашла тап-таса калаçать. Шкула кайиччен вырăсла та пĕлмен вăл.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Александр Иванович Михайловпа калаçатăп. Вăл ку ялтах çуралнă, чăвашла-вырăсла хутăштарса калаçать. Ашшĕпе амăшĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче Комсомольски районĕнчен куçса килнĕ.

– Ялта 175 кил, 555 çын пурăнать. Вĕсенчен ытларах чăвашсем, малтан тата та ытларах пулнă, 80-мĕш çулсенче те куçса килетчĕç, – каласа парать вăл. Кунти вăтам шкулта вара 100 ача вĕренет иккен.

Малалла ялта пурăнакан Галина Ильинична Нимковăпа калаçатăп. Вăл та Джогинора кун çути курнă, чăн чăвашла калаçать. Вăтăр çул ача пахчинче вăй хунă. Ялтан вун икĕ çухрăмра тĕрмесем, урăхла каласан колонисем вырнаçнă иккен, халăх нумайрах унта ĕçлет.

Галина Ильинична «Шур чечек» чăваш фольклор ушкăнĕнче юрлать, пирĕнпе пĕрле Байкалти Акатуя кайма хатĕрленни çинчен пĕлтерчĕ.

Шупашкартан килнĕ Чăваш наци конгресĕн хастарĕсене, юрăçсене тайгари Джогино ялĕнче пурăнакан халăх темрен хаклă çынсене кĕтнĕ пек кĕтнĕ. Пулă тытса хунă, ытти апат-çимĕçне те туллиех хатĕрлесе тултарнă, кăмакара вĕри яшка. Шкул столовăйĕнче хаклă хăнасемшĕн сĕтел йăтанса кăна тăрать...

Шкулти акт залĕнче уявран та уяв туса патăмăр эпир. Пирĕн хастар юрăçсем Елена Османова, Вячеслав Александров, Роза Степанова, Алина Варна, концерта ертсе пыракан Ирина Лампасовăпа Алексей Иванов, «Телей» фольклор ушкăнĕ тата ыттисем кунти йăхташсем чăваш юрри-ташшишĕн тунсăхланине туйса тата та хăпартланса хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Эпир те, ыттисем, аякри çул çÿреве тухнисем, Джогино халăхне чăвашлăх туйăмĕпе савăнтарас кăмăлпа, ыйхăсăр çул çинчен килнине манса, пĕрле ташлаттартăмăр, юрлаттартăмăр. Ватти-вĕтти чăваш çеммипе сикрĕ кăна...

Ялта чăвашлăха аталантаракан темиçе йăхташа Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Николай Угаслов алă пуснă Хисеп хучĕсемпе чысларăмăр, парнесем патăмăр. Çапла вăхăт иртни те сисĕнмерĕ.

Тайгари чăваш ялĕнчен малалла çул çÿреве тухас умĕн Бирюса юхан шывĕн илемĕпе, ял урамĕсемпе утса, таса сывлăш сывласа килентĕмĕр. Анчах пире Байкал кĕтет. Çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕсенче пирĕн Иркутск хулинче пулмалла, тата 700 çухрăм хыçа хăвармалла. Тулли кăмăлпа, аякри йăхташсен чăвашлăхшăн тунсăхланă туйăмĕсене лăплантарса çула тухрăмăр.

Пурин чунĕнче те канлĕ пулса кайрĕ. Тайгари Джогино ялĕ, унти чăвашсем нихăçан та асран тухмĕç. Чăн та, вĕсемшĕнех инçе çула тухнă пулсан та ÿкĕнес çукчĕ пулĕ...

Зоя ЯКОВЛЕВА, ЧНК пресс -службин ертÿçи .
*13.06.2017.*

## ПОКА ЖИВУТ ТРАДИЦИИ И РОДНОЙ ЯЗЫК…

*Были мы, есть и будем, – с гордостью повторяем мы за Петром Хузангаем, держа в уме утверждение ученых-историков, что народ живет, пока живут его язык, культура и традиции. А между тем, будущее чувашского языка, значит, и народа, спорно – численность сокращается от переписи до переписи, а чувашей, признающих родным русский язык, становится больше…*

Проблема сохранения и языка, и этноса осложняется тем, что половина чувашского народа живет за пределами республики. Известно, в регионах культурно-языковая среда сужена – нет национально-культурных учреждений, школ, значительны и масштабы ассимиляции. Там отход от родного языка и происходит быстрее всего. Проблему кризиса приобщения к языку, традициям и обычаям народа в регионах компактного проживания чувашей пытаются своими силами решать национально-культурные автономии, которых объединяет Чувашский национальный Конгресс. С целью узнать, как живут далекие сородичи, в какой помощи нуждаются, и была затеяна ЧНК акция «От Мурманска до Байкала», проходившая нынче с 25 мая по 10 июня.

**Этническое самосознание воспитывается чувством общности**

Заветов Петра Хузангая придерживается и Красноярская чувашская национально-культурная автономия. «Мы возродили и ежегодно проводим в июле Акатуй, осенью Чÿклеме, на которые собираются чуваши со всего края и близлежащих областей. Эти праздники рождают чувство родства, общности со своим народом, что в конечном итоге и воспитывает этнические самосознание», – знакомил президент автономии **Геннадий Храмов** делегацию ЧНК с деятельностью объединения на круглом столе, проходившем в Красноярске 31 мая.

Объединение чувашей губернии действует с 1991 года, за это время его активистам удалось сплотить в единую команду разрозненные

центры чувашской культуры, работавшие в городах и районах края. Сегодня за сохранение и развитие родных традиций «борются» также 22 коллектива художественной самодеятельности, 3 музея, 2 библиотеки. С их подачи и участием проводятся в регионе все праздники чувашской культуры, как краевые, так и местные. Первых, общепризнанных праздников родства и единения, по словам Храмова – четыре. Кроме названных выше двух автономия еще проводит ежегодную краевую конференцию чувашей, где подводятся итоги прошедшего года и ставятся задачи на будущий, и День чувашского языка. Консолидации помогают и мероприятия, которые проводит правительство края, и в которых активно участвует Красноярская чувашская национально-культурная автономия. Например, в краевом межнациональном фестивале «Содружество на Енисее». Фишка этого форума (ежегодно проводится в День России) – фестиваль каждый год принимает какая-нибудь национально-культурная автономия. Рассказывали, что в 2015 году национальные диаспоры принимали таджики на «Сайри лола», в 2016-м «Содружество» было в гостях на татарском «Сабантуе», в этом году хозяевами фестиваля стали наши красноярские сородичи. По словам Храмова, праздник прошел на «ура!». Гости чувашского Акатуя остались довольны. «В короне России много самоцветов – наций и народностей, живя в мире и дружбе со всеми, важно не раствориться в общей массе, а сохранить свое лицо, свою самобытность! – считает «предводитель» красноярских чувашей. – Когда ты демонстрируешь другим национальностям себя, свои обычаи – укрепляется национальный дух, чувство гордости за свой народ, а это формирует национальное достоинство».

Если с традициями у чувашей Красноярья, можно сказать, порядок, но не так радужно с родным языком. Он там существует только на бытовом уровне. Национальные школы в чувашских селах (после революции в крае действовали порядка 30 школ с чувашским языком преподавания. – Авт.) были закрыты в 50-е годы прошедшего века и с тех пор не открывались. Пыталась автономия решить и этот вопрос. Но даже в деревнях, где более 90 процентов населения чуваши, организовать в школе факультативное изучение родного языка не удалось. По мнению Геннадия Храмова, чуваши более чем другие народы подвержены ассимиляции. У нас не запрещены браки между людьми разных национальностей и вероисповеданий. И, как правило, в таких семьях родным для детей становится русский язык.

**Кстати, почему родители не учат детей родному языку? Одинаковый ответ довелось услышать в поездке и в Тюмени, и в Красноярске, и в Иркутске: «Если учить чувашскому, в последующем дети будут плохо говорить по-русски, окружающие будут над ними смеяться…»!? Ну не осуждаем же мы за акцент выходцев с Кавказа или из стран Балтии. Почему должны смеяться над чувашами, в речи которых иногда проскользнет неправильно сказанное русское слово?**

И все же надежда, что чувашский язык, «пришедший» на берега Енисея еще во времена хана Кучума, сохранится, есть. В прошлом году при сельском доме культуры деревни Казанка (основана в 1910 году, и сегодня большинство населения составляют чуваши. – Авт.) Казачинского района открылся кружок чувашского языка. Ведет его заведующая клубом, письменный родной с удовольствием учат и взрослые, и юные.

«Попробуем и в других селах с чувашским населением открыть подобные кружки, – не теряет оптимизма Храмов, – уйдет наше поколение, и язык родной исчезнет. История нам этого не простит».

**Знать и чтить язык и традиции прадедов должны молодые**

«Народ жив, пока молодое поколение воспитывается в национальном духе», – пожалуй, так можно назвать основную тему разговора большой конференции по проблемам сохранения культуры и чувашского языка в Сибири, которая проходила в Иркутске 2 июня. Участвовали в ней и члены правительства Иркутской области, и руководители чувашских объединений зауральских регионов, и конечно же, большая делегация ЧНК во главе с **Николаем Угасловым** и министром культуры Чувашии **Константином Яковлевым**.

В Иркутской области по переписи 1982 года проживало 11417 чувашей, 2002 года – 7445, 2010 года – всего 4089. И как констатировала председатель областного чувашского национально-культурного центра «Юлташ» **Вероника Тимофеева**, уменьшается не только численность соплеменников, но они к тому же плохо знают свою историю, культуру и обычаи, забывают родной язык. Помня о том, что будущее народа питают знание языка и своих корней, свою деятельность центр старается строить больше на просветительстве.

«Сохранить нашу национальную культуру, традиции, язык мы сможем только тогда, если передадим их нашим детям и внукам, а они своим», – знакомила с деятельностью «Юлташа» Тимофеева. – Поэтому мы стремимся формировать у подрастающего поколения восприятие родного языка, традиционной культуры, интереса к национально-краеведческой литературе. Они должны знать, помнить и чтить историю своих прадедов».

По инициативе центра в Иркутской области уже несколько лет проводятся различные конкурсы среди детей и подростков чувашской национальности. Но самым большим достижением своей деятельности «Юлташ» считает возобновление преподавания чувашского языка в школах.

Как известно из истории, обучать детей, и обязательно своему языку, для сибирских переселенцев всегда было непреложным правилом. Столыпинские «ходоки», обживаясь на новом месте, в первую очередь строили всем миром школу. В первые чувашские школы приезжали учителя из Симбирской губернии… Отрадно, что потомки унаследовали эти правила своих прадедов. Так, с подачи «Юлташа» и поддержке правительства области с 2015–2016 учебного года чувашский язык преподают в селе Масляногорск Зиминского района, с 2016–2017 года – в селе Джогино Тайшетского района. С нынешнего года, по словам Тимофеевой, язык дедушек и бабушек начнут изучать юные жители села Коновалово Балаганкого района.

О том, как происходит приобщение молодых поколений к родному языку и культуре, поведала собравшимся на конференцию нынешний первый учитель чувашского языка в Иркутской области **Надежда Фидикова**. Надежда Васильевна по первому образованию математик, получить вторую специальность в Институте народного образования в Чебоксарах ей помогли и правительство Иркутской области, и Чувашская Республика. Чувашский язык в 5–6 классах Масляногорской средней школы преподается один раз в неделю, на факультативной основе. Проблем с учениками, по словам учительницы, нет. Дети с удовольствием ходят на занятие, а особенно им нравится петь и танцевать. Кстати, делегация ЧНК убедилась в этом воочию – и на Дне города Иркутска (3 июня), и на Акатуе на Байкале (4 июня) Зиминский район представляла исключительно молодежь. Девчонки и мальчишки так отплясывали и так пели на чувашском, что трогало до слез.

«Один урок родного языка в неделю, конечно, мало, – говорила Надежда Васильевна. – Ведь приобщение к народной культуре происходит не только через изучение языка, но и через изучение обычаев, обрядов, народных промыслов и праздников». Поэтому в школе работают и кружки по чувашской вышивке, и по изготовлению чувашских кукол-оберегов. Рассказывают детишкам и об истории народа, и о великих и известных чувашах. А еще мальчишки и девчонки с удовольствием выезжают в соседние деревни (по словам Фидиковой, в селе Масляногорск и близлежащих деревнях Зиминского района до 70 проц. населения – чуваши), где с удовольствием делятся своими знаниями и проводят народные праздники, например, такие, как

Сурхури, Çаварни и другие. Тем самым, считают активисты «Юлташа», создается основа для формирования этнического сознания.

**Нужны встречи, культурные отношения и соглашения**

Будущее чувашского народа питают знание языка, своих корней, своего прошлого, контакты с соплеменниками, взаимная поддержка, – подытожили итоги поездки «От Мурманска до Байкала» на Большом **Совете ЧНК, который проходил 23 июня, в рамках Дня республики**.

Как уже писала наша газета, нынче исполняется 25 лет Чувашскому национальному конгрессу. Одна из основных задач тогда ставилась консолидация чувашского народа, живущего в разных регионах страны. Она, можно сказать, выполнена, констатировали в своих выступлениях активисты-аксакалы общественного движения. Если раньше в регионах зачастую о чувашах и не было слышно, сегодня за пределами республики действуют свыше 100 национально-культурных объединений. И они в большинстве своем признаются на местах одними из самых активных. Но, подчеркивали выступающие, успокаиваться рано, – заботу сплотиться и сохранить национальную традиционную культуру, дать выжить и сохраниться родному языку никто не снимает. Наоборот, в условиях глобализации задача становится еще актуальней. И региональным общественным объединениям в одиночку с ней не справиться.

Сородичам в регионах нужна помощь республики, единодушны были участники Совета. И помощь моральная. Нужны встречи, культурные отношения, разные соглашения между Чувашской Республикой и регионами с компактным проживанием чувашского населения. Например, такое, какое было подписано в рамках поездки между министерствами культуры Иркутской области и Чувашией. Бесценно по своему значению участие делегации республики на праздниках в Башкортостане, Тюмени, Красноярске, Челябинске . . . Такой метод работы, утверждали руководители региональных чувашских автономий, стимулирует власти субъектов на поддержку инициатив их общественных организаций. Если местные власти видят и чувствуют, что из Чебоксар местным чувашам уделяют повышенное внимание, то и они стараются удовлетворить их запросы. На что участвовавший в работе Совета Глава республики **Михаил Игнатьев** пообещал активнее реагировать на запросы автономий, если они сформулированы четко и по существу дела.

Кстати, во всех городах и селах пребывания в рамках поездки «От Мурманска до Байкала» активисты ЧНК проводили анкетирование на предмет чаяний региональных соплеменников. Как доложил Совету инициатор такого опроса вице-президент ЧНК **Валерий Клементьев**, к осени анкеты будут изучены и итоги оглашены на 10-м съезде, посвященном 25-летию ЧНК, который планируется провести 28 октября.

Елена ЗАЙЦЕВА.
*«Советская Чувашия», 19.07.2017.*

## ПИРĔН ТĔЛЛЕВ – ТĂВАН ХАЛĂХ ПУЛАСЛĂХĔШĔН ĔÇЛЕССИ

*Çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕсенче Чăваш наци конгресĕ çулталăкра пĕрре иртекен Мăн Канаш ларăвне пуçтарăнчĕ.*

Кăçалхи юпа уйăхĕнче Конгресс йĕркеленнĕренпе чĕрĕк ĕмĕр çитнине шута илсе тата республикăри влаç тытăмĕнче ĕçлекенсем Конгресс çĕклекен ыйтусене, Чăваш Ен тулашĕнчи йăхташăмăрсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калаçнисене, вĕсен татса паман ыйтăвĕсене илтчĕр тесе ларăва Правительство çуртĕнче иртттерме шутларĕç.

2013 çулта иртнĕ Аслă Пухура суйланнă Мăн Канаш пайташĕсем пурĕ çĕре яхăн шутланаççĕ. Вĕсемсĕр пуçне Раççей регионĕсенчи наци культура автономийĕсен ертÿçисем, ЧНКн районсенчи уйрăмĕсен ертÿçисем, ытти хастар кăнтăрла иртсен пĕр сехетре Правительство çурчĕн ларусен залне пуçтарăнчĕç. Тĕнче шайĕнче чăваш халăхĕн культурине, йăли-йĕркине тата чĕлхине сыхласа хăварассипе çыхăннă çивĕч ыйтусене çĕклекен организаци ларăвне Чăваш Республикин Пуçлăхĕ **Михаил Игнатьев**, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертÿçи **Юрий Васильев**, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕ **Валерий Филимонов**, ЧР культура министрĕ **Константин Яковлев**, ЧР информаци политикин министрĕ **Александр Иванов**, Чăваш Республикин Раççей Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представителĕ **Юрий Акиньшин**, Чăваш Енри Халăхсен Ассамблейин ертÿçи **Лев Кураков** килчĕç.

Мăн Канаша Чăваш наци конгресĕн президенчĕ **Николай Угаслов** уçса ертсе пычĕ. Вăл Мăн Канаша Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен инçе çула кĕскетсе килнисене чунтан тав турĕ, ларăвăн кун йĕркипе паллаштарчĕ. Пĕрремĕш ыйту – Чăваш наци конгресĕн черетлĕ X Аслă пухăвне ирттересси. Ку ыйтупа Конгресс президенчĕн саккун енĕпе ĕçлекен çумĕ **Петр Ивантаев** калаçрĕ. Вăл сĕннипех Аслă пуху валли квота çирĕплетрĕç. Съезда тĕрлĕ регионтан пурĕ – 91, республика районĕсенчен – 105, Шупашкартан 91 делегат суйлассишĕн сасăларĕç. **Мăн Канашра Конгресăн тăватă çулта пĕрре иртекен Аслă пухăвне юпа (октябрь) уйăхĕн 28-мĕшĕсенче пухас тесе йышăнчĕç**.

Чăваш наци конгресĕн çулталăкри ĕçĕ-хĕлĕ çинчен Николай Угаслов президент доклад турĕ, сăмахĕсене видеокуравпа çирĕплетсе пычĕ. Вăл Конгресс пуçарса янăранпах чăваш халăхĕшĕн тăрăшакан хастарсене тав турĕ. Уйрăм тав сăмахне ЧНК пĕрремĕш президенчĕ Атнер Хусанкай тата Виталий Станьял тивĕçрĕç. Ун хыççăн нумаях пулмасть иртнĕ «Мурманскран – Байкал таран» çул çÿрев çинчен тата Пĕтĕм чăвашсен Акатуйĕсем çинчен Конгресăн пĕрремĕш вице-президенчĕ **Валерий Клементьев** каласа, видеокуравпа çирĕплетсе пачĕ. Пĕлтĕр Крым Республикинче иртнĕ Акатуй пĕлтерĕшне те уçса пачĕ Валерий Леонидович.

Икĕ пысăк доклад хыççăн тухса калаçакансем йышлăн пулчĕç. ЧНК вице-президенчĕ **Алексей Леонтьев** Конгресс юбилейне халалланă кĕнеке кăларас ĕç мĕнле пыни çинчен каласа пачĕ. Беларуç çĕр-шывĕнчи чăваш наци культура автономийĕн ертÿçи **Геннадий Александров** Чăваш Ен Пуçлăхне, культура министрне тата ЧНК президентне Беларуç çĕр-шывĕн ертÿлĕхĕнчен Тав çырăвĕ çитерчĕ.

Тюмень тăрăхĕнче чăвашлăха упрас тĕлĕшпе пурнăçланакан ĕçсем çинчен «Тăван» ассоциаци ертÿçи **Ираида Маслова** каласа пачĕ, Бичурин вулавĕсем, нацисен культура фестивалĕсем Тюмень тăрăхĕнче çулсерен çÿллĕ шайра иртнине палăртрĕ. Килес çул çак уявсене Шупашкартан Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамбльне те чĕнме шутланине пĕлтерчĕ Ираида Николаевна.

– Çирĕм пилĕк çул хушшинче Конгресс чăн та чылай сумлă ĕçпе палăрчĕ, тĕплĕнрех Аслă Пухура калаçăпăр, – хак пачĕ ĕçе Чăваш наци конгресĕн пĕрремĕш президенчĕ **Атнер Хусанкай**.

– Чи пысăк çитĕнÿсенчен пĕри – чăваш наци вучахне ытти регионта чĕртсе тăратни. Малтанхи вăхăтра вĕсене пулăшса пымаллаччĕ. Халĕ вĕсем хăйсемех ура çинче çирĕп тăраççĕ. Вырăнти влаç органĕсем пире ăнланни те паха, – терĕ Чăваш халăх писателĕ **Анатолий Кибеч**.

**Виталий Станьял** çитĕнÿсене кăна мар, çитменлĕхсене те асăрхама ыйтрĕ. Чăваш Ен тулашĕнчи Акатуйсене тата ытти уява тухса çуренĕ май наука ĕçченĕсене, ăсчахсене те манса хăвармалла маррине палăртрĕ.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ **Михаил Игнатьев** ЧНК Мăн Канашне пуçтарăннă хастарсене республика аталанăвĕпе паллаштарчĕ, малашнехи тĕллевсене палăртрĕ. Тухса калаçакансене, тĕрлĕ çивĕч ыйту хускатакансене тимлĕ итлерĕ. Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăваш наци культура автономийĕн ертÿçи **Олег Мустаев** регионсенче Чăваш наци телекуравĕн корпункчĕсене уçассипе, **Олег Цыпленков** 2018 çула республикăра Иоаким Максимов-Кошкинскипе Тани Юн ятне парассипе, Пушкăртстанри Пелепей районĕнчи наци культура автономийĕн ертÿçи Владимир Яковлев хăйсем патĕнче историпе культура центрĕ

уҫассипе ҫыхӑннӑ ыйтусене ҫӗклерӗҫ. Республика Пуҫлӑхӗ вӗсен ыйтӑвӗсене тӳрех хуравласа пычӗ, ку енӗпе малалла ӗҫлеме шантарчӗ.

Мӑн Канаш ларӑвӗнче ӗҫлӗ калаҫусемсӗр пуҫне савӑнӑҫлӑ самантсем те пулчӗҫ. Тюмень тӑрӑхӗнче тӑван культурӑна, чӗлхене аталантарас, унти чӑвашсене пӗрлештерес тӗлӗшпе ҫитӗнӳсем тунӑшӑн, ырми-канми хастар ӗҫленӗшӗн «Тӑван» ассоциаци президентне **Ираида Масловӑна** Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Тав ҫырӑвӗпе тата алла ҫыхмалли сехетпе чысларӗ. Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн председателӗ **Валерий Филимонов** Питӗр тӑрӑхӗнчи чӑвашсен пӗрлӗхӗн ертӳҫине **Владимир Живова** Патшалӑх Канашӗн Хисеп хутне пачӗ.

– Чӑваш халӑхӗн ырӑ йӑли-йӗркине ҫитес ӑрӑва та парса хӑварас, наци хӑйсене евӗрлӗхӗпе пуянлӑхӗ сыхланса юлтӑр тесен Чӑваш наци конгресӗн, регионсенчи чӑваш наци культура автономийӗсен пӗрле ӗҫлемелле, хальхи вӑхӑтра кун валли пӗтӗм услови пур. Эпир те хамӑр енчен сире пулӑшса пырӑпӑр, – терӗ **Михаил Игнатьев** Мӑн Канаша пухӑннисене. Чӑваш наци конгресӗн президенчӗ Николай Угаслов уҫӑ калаҫушӑн, тухӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн республика ертӳлӗхне тата ларӑва пуҫтарӑннисене пурне те тав турӗ.

Зоя ЯКОВЛЕВА, ЧНК пресс-службин ертӳҫи.
*«Чӑваш тӗнчи», 2017, 2№.*

## Атнер ХУСАНКАЙ: «КОНГРЕСС – ХАЛӐХ ШУХӐШ-КӐМӐЛНЕ КӐТАРТАКАН ТЫТӐМ»

*Ку тӗлӗнмелле документ – 1992 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 28-мӗшӗсенче Чӑваш Республикин Аслӑ Канашӗн председателӗ Эдурад Кубарев алӑ пусса ҫирӗплетнӗ Чӑваш наци конгресне туса хурасси ҫинчен калакан хушу. Унтанпа 25 ҫул иртрӗ. Кӑҫал эпир пӗтӗм чӑваша пӗрлештерсе тӑракан общество организацийӗ йӗркеленнӗренпе 25 ҫул ҫитнине паллӑ тӑватпӑр. Истори пӗлтерӗшлӗ ҫак пулӑма халалласа «Чӗрӗк ӗмӗр – иртнипе пулассине ҫыхӑнтаркан тапхӑр» ярӑм пуҫарса ятӑмӑр. Паянхи кӑларӑм хӑни – Чӑваш наци конгресӗн пӗрремӗш тата хисеплӗ президенчӗ Атнер Петрович Хусанкай.*

**– Атнер Петрович, организацие пуҫарса янӑ тапхӑрти пулӑмсене тепӗр хут аса илер-ха…**

– Чӑваш ятне ҫӗклеме, Раҫҫей – ун чухне Совет Союзӗ – тӑрӑх саланнӑ чӑвашсене пӗрлештерме, йӑхташӑмӑрсен чун-чӗринче Тӑванлӑх туйӑмне ҫуратма тунӑ пӗрлӗх вӑл. Геннадий Волков академикпа калаҫнӑччӗ. Вӑл «чӑвашсен тӑван ҫӗр-шывӗ ҫук» тени питӗ хумхантарса ячӗ. Мӗнле-ха капла? Епле тӑван ҫӗр-шыв ҫук? Ҫапларах ҫав пирӗн шӑпа. Чӑвашсем тӗрлӗ вырӑнта пурӑннӑ, йӑхташӑмӑрсем Калининградран пуҫласа Сахалин таранах саланнӑ. Чӑваш ҫыннисене пӗрлештерме ятарлӑ тытӑм кирлӗ пулнӑ. Ҫапла вара чӑвашлӑх туйӑмӗпе ҫунса тӑракан хастарсемпе Чӑваш наци конгресӗ пирки шухӑшлама пуҫларӑмӑр. Ҫапла вара юпа уйӑхӗн 8–9-мӗшӗсенче Аслӑ пуху ирттертӗмӗр, унта 900 яхӑн делегат, 200 яхӑн хӑна хутшӑнчӗ. Тинех чуна ыраттаракан ыйтусем ҫинчен калаҫма пуҫларӑмӑр. Ун чухне ҫанталӑкӗ те хӑйсене майлӑччӗ, самана сывлӑшӗ те урӑхрахчӗ. Тапрану тапхӑрӗ пулнӑ вӑл. Халӑхсем хӑй тӗллӗнлӗх прави, тӑван чӗлхе малашлӑхӗ, культури, Республика суверенитечӗ пирки шухӑшланӑ.

**– Чӑваш енре халӑхсен туслӑхӗн ҫуртне тата Чӑваш Республикин халӑхсен Ассамблейине туса хучӗҫ. Атнер Петрович, мӗнле шухӑшлатӑр: вӗсен ӗҫ-хӗлӗ Чӑваш наци конгресӗпе ҫыхӑннӑ-и?**

– Ман шутпа, ку урӑхларах ыйту. Эпир никама та хирӗҫ мар, Чӑваш Республикинче пурӑнакан кирек хӑш халӑх ҫыннипе те туслӑ пурӑнма хатӗр. Чӑваш наци конгресӗн тӗллевӗсем урӑхларах. Пирӗн Атӑлпа Урал тӑрӑхӗнчи халӑхсемпе – тутарсемпе, ирҫесемпе, удмуртсемпе, ыттисемпе – ҫыхӑнмалла. Эпир ҫак ҫӗрсем ҫинче вӗсемпе пин ҫул патнеллех пӗрле пурӑнатпӑр. Кунтисемпе пӗр республикӑра пурӑннӑран пӗр чӗлхе тупатпӑр. Кӳршӗри регионсемпе ӗҫлемелле, вӗсемпе ҫыхӑнусем тытмалла. Кун пек пуҫарусем унччен те пулнӑ. 1994 ҫулта Атӑлпа Урал тӑрӑхӗнчи халӑхсен Ассамблейине туса хунӑччӗ. Кайран политика, экономика пурнӑҫӗнчи йывӑрлӑхсене пула уйрӑлса кайрӑмӑр, кашни наци хӑй тӗллӗн пурӑнма пуҫларӗ. Халӗ урӑхларах самана, ҫыхӑнусем йӗркелеме ҫӑмӑлтарах. Интернет пур, ытти май та ҫителӗклӗ.

**– Чӑваш наци конгресне политика организацийӗ мар теҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах культура енӗпе кӑна ӗҫленӗшӗн те айӑплама пӑхаҫҫӗ…**

– Унччен те айӑпланӑ. Акӑ Геннадий Архипова «эсир культура министерствин пӗр пайӗ кӑна пулса тӑтӑр» тесе сахал мар каланӑ. Вӑл та, ку та кирлӗ. Эпир политикӑран та пӑрӑнма пултараймастпӑр. Ҫав вӑхӑтрах пирӗн наци политики пирки ытларах шухӑшламалла. Анчах унӑн икӗ енлӗ пулмалла. Пӗрремӗшӗ – шалти наци политики. Чӑваш Енре тӗрлӗ халӑх ҫынни пурӑнать, вӗсемпе туслӑ ҫыхӑнусем йӗркелемелле. Республика тулашӗнчи чӑвашсемпе уйрӑм наци политики пулмалла. Чӑваш наци конгресӗ ҫав тӗллевсене туса пынӑ май йӑхташӑмӑрсене пӗрлештерме пултарнӑ. Чӗлхе политики те пулмалла.

**– Чӗлхе политики тенӗрен… Эсир чӗлхесем ҫинчен калакан саккуна ҫырни-йышӑннисенчен пӗри пулнӑ. Ҫакӑн ҫинчен те аса илер-ха.**

– Паян ҫак саккун вӑйсӑртарах пек туйӑнать. Саккуна пурнӑҫламалла! Кунсӑр пуҫне ӑна пӑхса тӑракан ятарлӑ патшалӑх тытӑмӗсем те кирлӗ. 1920–30-мӗш ҫулсенче саккун та йышӑнман. Положени ҫеҫ пулнӑ. Апла пулин те ӑна пурнӑҫланине питӗ ҫирӗп сӑнаса тӑнӑ. Ун чухне кашни районта чӗлхе ушкӑнӗсем пулнӑ. Вӗсем ҫав Положени мӗнле пурнӑҫланнине пӑхса тӑнӑ. Ҫакнашкал тытӑмсем халӗ те кирлӗ. Акӑ, тӗслӗхрен, эпир тупӑш илетпӗр, ҫавӑншӑн пирӗнтен налук тытаҫҫӗ. Никам та пирӗнтен ыйтмасть: ҫав налука тытса юлмалла-и е ҫук-и? Кунта та ҫаплах пулмалла. Саккуна пурнӑҫламалла! Ҫынсенчен «эсир майлӑ-и е хирӗҫ-и?» тесе ыйтмалла мар. Акӑ хӑш-пӗр ашшӗ-амӑшӗ ачисене шкулта чӑвашла вӗрентме хирӗҫ. Саккун пур – мӗншӗн ӑна пурнӑҫласси пирки такамран ирӗк ыйтмалла?

Чӑваш халӑхӗ тӗнчешӗн хӑйӗн чӗлхипе интереслӗ. Вӑл тӗрӗк чӗлхисен ушкӑнне кӗрет, анчах ыттисенчен уйрӑлса тӑрать. Эпир тутарсене, турккӑсене ӑнланмастпӑр. Чӑваш чӗлхи – тӗрӗк чӗлхисенчен пӗри, вӑл чи малтан уйрӑлса кайнӑ. Турра шӗкӗр, тӑван чӗлхемӗр паян та пурӑнать-ха.

**– Уставра Чӑваш наци конгресӗ пирки «пӗтӗм тӗнчери организаци» тесе ҫырнӑ. Халӗ «регионсен хушшинчи общество организацийӗ» теҫҫӗ. Тӗрӗсрех мӗнлерех-ши?**

– Малтан пӗтӗм чӑваш халӑхӗн чи аслӑ пухӑвӗ тесе йышӑнтӑмӑр. Вӑл патшалӑх тытӑмӗ мар, Мӑн Канаша, президента халӑх хӑй суйланӑ. Хальхи вӑхӑтра, шел те, чӑваш халӑхӗн шухӑш-кӑмӑлне, наци диалогне кӑтартакан урӑх тытӑм ҫук. Патшалӑх органӗсен, республика пуҫлӑхӗн тӗллевӗсем урӑхла. Чӑваш наци конгресӗн тӗллевӗ вара – наци диалогне аталантарасси, чӑвашсен чӑмӑртанӑвне вӑйлатасси. Пирӗн, чӑвашсен, пӗр ҫитменлӗх пур. Эпир ял шухӑшлавӗпе пурӑнатпӑр. Тахҫан ҫакна Мӗтри Юман та сивленӗ. Пӗтӗм халӑх валли наци идеологийӗ кирлӗ. Ӑна йӗркелекенни – Чӑваш наци конгресӗ, ун тавра пуҫтарӑннӑ тӗрлӗ ӑс-хакӑл ҫыннисен, тӗрлӗ вырӑнта пурӑнакан чӑвашсен сӗнӗвӗсем.

**– Атнер Петрович, палӑртни-шутлани пурнӑҫланчӗ-и?**

– Манӑн шухӑшӑмпа – ку таранччен нумай япала ӗҫе кӗртнӗ е вӑрлӑха хывнӑ, вӑл хӑҫан та пулсан пур-пӗрех шӑтса тухать. Тӳрех мар пулин те. Халӑх аталанӑвӗ тӳрех пулмасть вӑл. Халь йышӑнатпӑр та ҫав самантрах пурнӑҫа кӗрет теме ҫук. Пурнӑҫ улшӑнсах тӑрать, тӗрлӗ ларутӑру сиксе тухать. Пирӗнни пек пухусене иртнӗ ӗмӗрӗн 17–18-мӗш ҫулӗсенче Чӗмпӗрте, Хусанта ирттернӗ. Ун чухне ҫӗкленӗ ыйтусем халӗ те пур, ҫивӗчлӗхне ҫухатман. Унтанпа 100 ҫул иртсе кайнӑ пулин те.

**– Хальхи вӑхӑтра Чӑваш наци конгресӗнче ӗҫлекен ертӳҫӗсене мӗнлерех сӗнӳсем парас килет?**

– Паян пирӗн республикӑра тӗрлӗ пултарулӑх ушкӑнӗсем пур. Ӳнерҫӗсен, ҫыравҫӑсен, композиторсен… Вӗсем сумлӑ, тӗнчипе паллӑ ҫынсем. Чӑваш наци конгресӗн наци интеллигенцийӗ, халӑхӑн пуҫ мими пулса тӑракансене хӑй тавра пуҫтармалла.

Зоя ЯКОВЛЕВА калаҫнӑ, Валентина БАГАДЕРОВА ҫырса илнӗ.
*«Чӑваш тӗнчи», 2017, 2№.*

## ТĔП ТĔЛЛЕВ – ТĔРЛĔ ВЫРĂНТА ПУРĂНАКАН ЕНТЕШСЕНЕ ПĔРЛЕШТЕРЕССИ

*Кăçалхи юпа уйăхĕнче Чăваш наци конгресĕ ĕçлеме тытăннăранпа 25 çул çитет. Çак сăлтава тĕпе хурса Чăваш наци телевиденийĕ «Хыпарçăсем» кăларăм ўкернĕччĕ. Унта ЧНК президенчĕпе Н.Ф. Угасловпа пĕрремĕш вице-президенчĕ В.Л. Клементьев, Конгресăн ытти хастарĕсем хутшăннăччĕ. «Чăваш тĕнчин» эсир çак вăхăтра аллăрта тытакан номерĕнче телекăларăмăн хăш-пĕр саманчĕпе паллаштаратпăр. («Хыпарçăсем» кăларăма вара Чăваш наци конгресĕн сайтĕнче пăхма пултаратăр).*

**– Николай Федорович, 25 çул... Шухăшласан, сахал та, нумаях та мар пек. Калăр-ха, тархасшăн, мăнаçланма-мухтанма пултаракан еплерех ĕçсемпе палăрчĕ çак тапхăр?**

– Чăн малтанах çавăн пек лăпкă мар, йывăр 90-мĕш çулсенче Чăваш наци конгресĕ евĕр тытăм йĕркелесе яма вăй-хăват çитернĕ ентешĕмĕçтешĕмсене, ЧНКн пĕрремĕш съездне хутшăннă пур делегата та тав тăватăп. Çав çăмăл мар, пăтрашуллă саманара витĕмлĕ ыйту-тĕллев лартма пултарнă-çке вĕсем! Тăван чĕлхене, йăла-йĕркене упрас, культурăна аталантарас, хамăрăн Чăваш Республикинче тата унăн тулашĕнче пурăнакан йăх-тымарсене манма парас мар тени паян уйрăмах çивĕч тăрать тетпĕр пулин те, ун чухне те, 25 çул каялла, пулнă паллах. Тĕрĕссипе, çав пуçламăш тапхăрта та ЧНК хастарĕсем çак ыйтуĕçсемшĕнех чĕрисене ыраттарнă.

Сулмаклă та пĕлтерĕшлĕ ĕçсем, чăн та, сахал мар пулчĕç. Пĕр-пĕрин патне çўрени, юрлани-ташлани кăна мар вăл чăвашлăхшăн ĕçлени тесе çирĕплетсех калас килет манăн. Юлашки çулсенчи ĕçсене кăна каласа хăварам. Константин Иванов поэтăмăр çуралнăранпа 125 çул çитнине, ас тăватăрах пулĕ, Пушкăртстанри Слакпуçĕнче мĕн тери çўллĕ шайра уявларăмăр. Пĕлтĕр Крымри Севастопольте Пĕтĕм чăваш халăхĕн Акатуйне унта кайса-пуçтарăнса ирттертĕмĕр. Кăçал тата Байкал кўлли хĕрринче мĕн тери вăйлă ĕçсем иртрĕç. Шăпах çавăн пек мероприятисем чăваш ывăл-хĕрне пĕр-пĕринпе хутшăнма, пĕр-пĕрин пурнăç опычĕпе паллашма, пĕр-пĕрне пулăшма майсем туса парассĕ те ĕнтĕ.

Тата пĕлетĕр-и мĕн килĕшет, савăнтарать? Юлашки çулсенче пирĕн Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççейри чылай регионта пулать. Ĕçлĕ ыйтусене татса панипе пĕрлех вăл çав вырăнта пурăнакан чăваш ывăл-хĕрĕпе, чăваш наци культура пĕрлĕхĕсен хастарĕсемпе тĕл пулать, вĕсене унта иртекен çўллĕ шайри мероприятисен ĕçĕ-хĕлне явăçтарать, ыйту-нушине татса пама пулăшать. Субъектсен ертўçисем те, сăмах май, вĕсем патĕнчи ытти наци пĕрлешĕвĕсем хушшинче пирĕн чăваш автономийĕсем – Тюмень, Иркутск, Красноярск, Чулхула, Мурманск т.ыт.те – чи маттуррисем пулнине çирĕплетеççĕ. Савăнтарать çакă, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсене кăна мар, ырă ĕçĕсемпе пĕтĕм Чăваш тĕнчине, халăхне çўллĕ шайра, лайăх енчен кăтартаççĕ.

Е тата «Чăваш тумĕ», «Кĕмĕл сасă», «Чăваш пики» евĕр фестиваль-конкурссене кăна тĕслĕх вырăнне илсе кăтартар. Юлашки çулсенче 20 яхăн регионти яш-кĕрĕм хутшăнчĕ вĕсене. Çамрăксенче – пуласлăх тетпĕр те, паллах, савăнтарать пире çакă. Çав вăхăтрах çамрăксемпе ытларах, вăйлăрах, конкретлăрах, тăтăшрах ĕçлемелли çинчен манмастпăр. Хамăр республикăра кăна мар, ытти регионта та тимлĕрех пулмалла пирĕн çак енĕпе. Манăн тĕп тĕллев – тĕрлĕ вырăнта тымар ярса пурăнакан ентешсене пĕрлештересси, вĕсене пĕр-пĕринпе тухăçлăн хутшăнса ĕçлеме майсем туса парасси.

Тĕрĕссипе, тăван халăх, чĕлхе пуласлăхĕпе çыхăннă кулленхи ĕçсем темĕн чухлех, ытларах чухне вĕсем çинчен ентешсем пĕлмесĕрех юлма та пултараççĕ. Хăш-пĕр чух пĕри-пĕри «Уявсем ирттерсе çўретĕр...» евĕрлĕрех калаçкаланине те илтетĕн. Анчах, тăванăмăрсем, увĕ килет те иртсе каять, анчах вăл хатĕрленмесĕр иртмест вĕт-ха. Çитменнине ячĕшĕн кăна мар, кашни мероприяти усăллă пултăр тесе мĕн чухлĕ вăй, мĕн пытармалли – укçа-тенкĕ те тăккалама, вăхăта çухатма тивет. Юрать-ха ăнланакансем, пулăшас текенсем те çук мар. Епле каланă-ха пирĕн ватă асатте-асаннесем? Пĕччен сурать – типсе пырать, халăх сурать – кўлĕ пулать. Чăнах та çапла.

**– Паян урамра хуçаланакан 21-мĕш ĕмĕр, рынок самани саккăрла çаптараççĕ пулин те, çак çăмăл мар тапхăрта çирĕп кăмăллă, мал шухăшлă, хăйсен вăйне шанса ĕçлекенсем, пурăнакансем те чылай пулни савăнтарать... Çапла-и, Валерий Леонидович?**

– Чăнах та çапла. Пирĕн Чăваш Республики тулашĕнче пурăнакан ентешсенех илер. Регионсенче паян кун тĕлне Чăваш наци культура пĕрлĕхĕсем 100-тен те иртсе кайрĕç. Çак шут, тĕрĕсрех, йыш хушăнсах, вăйлансах пырать. Наци культура пĕрлĕхĕсен ертўçисем хăйсем тавра вырăнти чăваш чунĕллĕ хастарсене пĕр чăмăра пĕрлештерме пултарнипе питĕ пархатарлă та пĕлтерĕшлĕ. Юлашки вăхăтра кăна Коми Республикин тĕп хулинче Сыктывкарта чăваш пĕрлĕхне уçрăмăр. Керчь хулинчи ентеш-йăхташăмăрсем çакăн пек кăмăл пуррине пĕлтерчĕç.

Тĕрĕс калать Николай Федорович, ăнланакансем пурри хавхаланупа вăй-хăват парса пырать. Тата – команда пурри питĕ паха! Шухăшлăрха, икĕ эрне хушшинче 4–5 региона çитрĕмĕр, унти ентешсемпе тĕл пултăмăр, ĕçлĕ калаçусем, «çавра сĕтелсем» йĕркелерĕмĕр. Иркутскра наци ыйтăвĕсене çĕклерĕмĕр, питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ конференци ĕçне хутшăнтăмăр. Мĕн пытармалли, çакăн пек çул çўревсем пире кăна мар, регионсенче пурăнакан ентешсене те хавхалантараççĕ. Эппин, Чăваш Республики вĕсене манмасть, вĕсене пулăшма, пĕрле пулма тăрăшать. Çакна вырăнти влаçсем те туяççĕ, май пур тарăн пулăшса пыраççĕ.

Нихăçан та çăмăллăх шыраман. Хамăр умма тĕллев-задача лартатпăр та «кĕрсе каятпăр». Шикленме те пĕлместпĕр вĕт – укçа-тенкĕ, вăй-хăват çитет-и е çитмест-и – пур пĕрех малалла талпăнатпăр. Вĕçĕнче вара, чăн та, йĕркеллĕх пулса тухать. Çавăнпа Чăваш Республикин Правительствине, Культура министерствине, регионсенчи чăваш наци культура автономийĕсен, ытти пĕрлешўсен ертўçисене ăнланнăшăн, май çитнĕ тарăн пулăшма тăрăшнăшăн тепĕр хутчен чĕререн тав тăватпăр.

**– Николай Федорович, Валерий Леонидович, эпир вара хамăр енчен сире тав тăватпăр, ырлăх-сывлăх, чăтăмлăхпа çăмăллăх сунатпăр. Ĕмĕрсем иртсе пырсан та, ĕмĕрсен тусанĕ историе сийĕн-сийĕн витсе пырать пулсан та – хамăрăн чĕлхене, историе, аваллăха ниепле те манма юрамасть пирĕн. Вĕсене, хамăрăн мăн асатте-асаннесене, вĕсен йăли-йĕркине, тумĕсене эпир манмасан вĕсем чĕрĕ шутланаççĕ.**

Лидия ФИЛИППОВА калаçнă.
*«Чăваш тĕнчи», 2017, 3№.*

## Виталий СТАНЬЯЛ: ЭПИР ÇАПАХ ТА ТĔРĔС ÇУЛ ТУПНĂ

*Чăваш наци конгресне йĕркеленĕренпе 25 çул çитнине халаллана «Чĕрĕк ĕмĕр – иртнипе пуласлăха çыхăнтаракан тапхăр» ярăма малалла тăсăпăр. Паянхи кăларăм хăни – филологи наукисен кандидачĕ, халăх академикĕ, поэт, писатель, Чăваш наци конгресне никĕслекенсенчен пĕри Виталий Петрович Станьял (Никитин).*

**– Виталий Петрович, аса илў çăмхине сўтме вăхăт çитрĕ...**

– Чĕрĕк ĕмĕр вăл сахал мар. Чĕрĕк ĕмĕр хушшинче çын пурнăçĕнче те, пĕрлешўсенче те питĕ нумай улшăну пулса иртет. Чăваш наци конгресне йĕркелени çинчен калаçма пуçличчен малтан Яковлев обществине туса хуни пирки аса илмелле. Çак пĕрлĕх уставне эпĕ 1988 çулта Грузире Цхалтуба хулинче çыртăм. Ку шухăш Руставели обществипе паллашнă хыççăн пуçа пырса кĕчĕ. Мĕншĕн чăвашсен Яковлев обществине тума май çук? Ун чухне пирĕн ăсра Яковлевран пысăк çын пулман. Анчах пире парторганизаци çав пĕрлĕхе йĕркелеме ирĕк памарĕ. Ваттисем ас тума тивĕç. «Родина» кинотеатр пулнă суртра пуçтарăннăччĕ эпир. Зал йĕри-тавра – милиционерсем, урам тулли – милиционер. Автобуссене çўреме чарнă, студентсем демонстрацие пынă пек пуçтарăнаççĕ. Анчах тĕп докладчик пымарĕ. Çапах та пуху лайăх иртрĕ. Атнер Хусанкай пурччĕ, Иосиф Дмитриева лайăх ас тăватăп. Ку – пĕрремĕшĕ.

Унтан Чăваш общество-культура центрне йĕркеленĕччĕ. Кайран ăна «Вучах» хаçат кăларма пуçласан Михаил Николаевич Юхма хăйĕн аллине çавăрса илчĕ. Кайран вара пирĕн ЧОКЦ йĕркеленсе кайрĕ. Ун чухне вĕтĕ-вĕтĕ партисем нумайччĕ. Сăмахран, Чăваш аталану партийĕ. Унăн уставне çыртарассине те эпĕ ертсе пынă. Анчах эпĕ çав партие кĕмен, мĕншĕн тесен наци палли тăрăх парти тума юрамасть. Чăваш партийĕ, тутар партийĕ, çармăс пăртийĕ, еврей партийĕ... пулма пултараймасть.

Çав çулсенче партисем нумайланса кайрĕç. Капла хирĕçсе пурăнса май килмест, мĕнле те пулин урăхла форма тупмалла. Ассамблея, ассоциаци, Конгресс... Эпĕ хам ун чухне Чăваш халăх хуралĕ тесе сĕннĕччĕ. Халăх сапаланса кайнă, çĕр-шыв пăтранать. Çынсене хӳтĕлемелле. 1992 çулхи нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕсенче «Хыпар» хаçатăн пĕрремĕш страницинче сылтăм енче Чăваш халăхĕн наци конгресне пуçтарасси пирки пĕлтерӳ пичетленчĕ. Интереслĕ те, çавна вулакансем асăрхаман та. Кубарев вара асăрханă. Вăл ун чухне Чăваш Республикин Аслă Канашĕн председателĕ. Аслă Канаш пире майлă пулчĕ.

Атнер Петрович Хусанкая йĕркелӳ комитетне йĕркелеме сĕнтĕмĕр. Вăл ун чухне депутат. Малтанах кам пăртак чăваш тӳпинче палăрнă – çавсене пурне те шутласа тухрăмăр. Вăл, ку, тепри... Анчах Хусанкайран лайăхрах ят тупаймарамăр. Ашшĕн ячĕ, амăшĕн ячĕ, хăй депутат. Вăл хирĕç мар. Э. Кубарев мана пĕрремĕш ларурах Конгресс уставне çырма хушрĕ. Пуç кĕçтесе кайрĕ: эпĕ комсомол уставĕпе парти уставĕсĕр пуçне урăх нимĕнле устав та курман. Пĕр виçĕ кунта унтан-кунтан пăхкаласа пуçра мĕн пуррине чĕркелесе пăрахрăм. Вăл пулса çитнĕ устав та мар, çапах та никĕсĕ пур.

Татах аса илес килет. Шăпах çав вăхăталла тутарсем те ку ыйтăва хускатрĕç. Э. Кубарев мана тата Хусанкая хăйĕнпе пĕрле Хусана Пĕтĕм çĕр-шыври тутарсен курултайне илсе кайрĕ. Манăн унта тăхтав вăхăтĕнче сцена çинче тăмалла пулчĕ. Шаймиев патне çын çырăнать те çырăнать. Пĕри пырать, тепри... Пĕр вată макăрса тăрать: «Тархасшăн, кĕртĕр. Австралирен килнĕ эпĕ, Шаймиевпа калаçмасăр каяймастăп», – тет. «Кĕртĕр ĕнтĕ çак вата çынна», – терĕм эпĕ те чăтса тăраймасăр. Шаймиев эпĕ калаçнине илтрĕ те хайхи вата çынна хăй патне чĕнсе илчĕ. Нумай калаçмарĕ ватăскер: «Эпĕ ĕмĕр тăршшĕпе çак саманта кĕтрĕм. Эпĕ каятăп, анчах еткерлĕхе тутар халăхне парса хăварасшăн».

Çакăн хыççăн Кубарев питĕ çирĕп ыйтма пуçларĕ. Тутарсем пухăва лайăх ирттерчĕç, пирĕн те вĕсенчен кая юлмалла мар. Манăн шухăшăмпа – пĕрремĕш съезд кĕтнинчен те лайăх иртрĕ. Николай Васильевич Пыркина ырăпа асăнас килет. Йывăр тăпри çăмăл пултăр. Вăл Аслă Канашра пай пуçлăхĕнче ĕçлетчĕ, документсене хатĕрлес енĕпе нумай тăрăшрĕ. Хальхи пек Интернет, телефон çук. Ют çĕр-шыври ентешсене шыранă. Акă манан алăра список. Илья Алексеевич Антонов, Канадăра пуранать. Сергей Николаевич Падюковпа эпĕ Самар урлă çыхăнтăм. Надежда Панферова унта чăвашлăх ĕçĕпе ĕçлет. «Кунта пирĕн Альбина Краснова художник пур. Вăл Германири, Англири, Америкăри, ытти ют çĕр-шыври çынсемпе çыхăнса тăрать. Вăт ун патне йыхрав ятăмăр. Падюков питĕ савăнчĕ: «Ахаль те пырса курасшăнччĕ-ха. Манăн Хĕрлĕ Чутай районĕнче пурăнакан тăвансем пур...». Падюков килни пирĕншĕн чăннипех сенсаци пулчĕ. Хамăр патрисем, тулайрисем, диаспорăри чăвашсем кĕпĕрленсе килчĕç. Пĕрремĕш съезд, каларăм ĕнтĕ, питĕ хаваслă, çĕкленӳллĕ уяв пулчĕ.

**– Канадăран, Америкăран мĕншĕн хистесех чĕнсе илнĕ-ха?**

– Тĕнчери мĕн пур чăваша пĕрлештерес тĕллев пулнă чи малтан. Хистемен. Кунтисемпе – лайăх-и, начар-и – çыхăну çапах та пур. Эпĕ студентсемпе Тутар, Пушкăрт, Самар, Куйбышев çĕрĕсем тăрăх 25 çул çӳренĕ. Экспедици, тĕл пулу шучĕпе кăна мар, кирек ăçта кайсан та «пирĕн, чавашсен, мĕнле чăмăртанмалла?» ыйтăва çĕкленĕ. Пĕрремĕш калаçăва хальхи пек лайăх ас тăватăп: Самар облаçĕнчи ялти колхоз правленийĕнче механизаторсемпе тĕл пултăмăр. Сăмах мĕн пирки пынине ăнлансан савăнса кайрĕç: Шупашкара кайса курмалла. Ытти çĕрте чăвашсем мĕнле пурăнаççĕ?» Механизаторсем! Вĕсем вĕреннĕ çынсем мар, интеллигентсем мар. Шкул директорĕсем, партком секретарĕ чĕнмесĕр ларчĕç. Темле каласан лайăх? Çӳлтен тем калаççĕ-ха тата?

**– Виталий Петрович, пĕрремĕш съезд президиумĕнче камсем ларчĕç?**

– Геннадий Никандрович Волков, Андриян Григорьевич Николаев. Манăн Чăваш наци конгресĕн президенте вĕсене суйлас килетчĕ. Ялав вырăнне. Ĕçлекеннисем мар. Анчах иккĕшĕ те килĕшмерĕç.

**– Пĕрремĕш съездран мĕн асра юлчĕ?**

– Пĕрремĕш съездра эпĕ хатĕрленĕ сăмаха та калаймарам. Тăсăлса кайрĕ. Нумай калаçрĕç: эпир кăна тунă, кăна тăватпăр. Проблема çинчен вара калаçасшăн мар. Вĕсем чăваш халăхĕн пурнăçĕ çинчен, Раççей шăпи çинчен шутламан. Хăйсем мĕн тунине халăха пĕлтерни пĕлтерĕшлĕрех, паллашу савăнăçĕ ытларах пулнă.

**– Çав вăхăтра уйрăмах хастаррисем камсем пулчĕç?**

– Николай Егорович Лукианов документсене тивĕçлĕ шая çитерессишĕн нумай тăрăшрĕ. Эпир ун чухне, тĕрĕссипе каласассăн, патшалăх шайĕпе документ тума пĕлекен çынсен шайне ӳссе çитнĕскерсем пулман. Халăха чĕнсе каланине [«Хыпар» хаçат редакторĕ, ЧНК йĕркелӳ комитечĕн членĕ] Алексей Петрович Леонтьев ыйтнипе пиччене пытарнă кун ялта çыртăм, кӳршĕ ачинчен хулана парса ятăм. Леонтьев мана кая юлатпăр тесе васкатать. Картишĕнче тупăк тăваççĕ. Эпĕ урама пĕрене çине тухса лартăм. Шухăшĕсем малтанах пулнă ĕнтĕ, анчах çырса пĕтерейммен.

**– Юлашки çулсенче, Николай Угаслова президента суйласан, сирĕн ĕмĕтсем, шухăшсем улшăнмарĕç-и?**

– Николай Угаслов тупăнни вăл – Конгресшăн телей. Ăна эпĕ унччченех лайăх пĕлетĕп. Унăн тăван ялĕнче Хулаçырминче те пулса курнă. Ăна суйланăшăн пĕрре те ӳпкелеместĕп. Вăл тӳнсе каякан урапана тăратса лартрĕ. Хайĕн мĕн чухлĕ нушаллă ĕç пулсассăн та вăхăтне тупса йĕркене кĕртрĕ, укçи-тенкине шеллемерĕ. Конгресăн халĕ идеологи, политика шайне хăпарса халăха чăмăртанма, экономикăна, финанс тытăмне, халăх хуçалăхне аталанма пулăшакан вăй пулса тăмалла. Николай Угаслов çинчен çырнисене сăнаса, вуласа пыратăп. Вăл нушапа, ĕçпе, тарпа пиçĕхсе ӳснĕ çын, йăкăлтатса çӳрекенскер мар. Чăн чăваш характерĕллĕ çын. Шăпах çавăн пеккисем ытларах кирлĕ. Шухăшламасăр каламасть, шухăшламасăр ĕç тумасть.

Юбилей ячĕпе тăрăшса ĕçленĕ çынсене тав тума та пĕлмелле. Ырă сăмах калама та пĕлмелле. Конгресăн ятне пĕтерер мар. Пуçламăшĕ лайăх, форми лайăх. Çакна малалла та аталантарасчĕ. Эпĕ халь шутлатăп та – çапах та тĕрĕс çул тупнă. Ĕçлемелли мелĕсем те нумай. Мăн Канашра, Президиумра хальхи вăхăтра ĕçлекенсен тиркенĕшĕн çиленмелле мар. Итлемелле: каланинче юрăхлă пĕрчĕ пур-и е çук-и? Юрăхлине ăса илмелле.

Конгресра ĕçлекенсене саламлатăп. 25 çул вăл çапах та паллă çул. Ăна чыслă ирттермелле. Çимĕçне тивĕçлĕ ӳстермелле, çимĕçне пуçтарнă хыççăн хунавне те куçарса ӳстерме пĕлмелле. Конгресс çавăн пек чĕрĕ япала вăл: халăх пĕтмесĕр пĕтмест.

Зоя ЯКОВЛЕВА калаçнă,
Валентина БАГАДЕРОВА çырса илнĕ.
*«Чăваш тĕнчи», 2017, 3№.*



*Чăваш наци конгресĕн президиумĕ.1992, юпа, 8.*



*Тĕнчене тухайман нацисемпе халăхсен организацийĕн 3-мĕш Генеральнăй ассамблейин делегачĕсем.*



*Ларăва А.П. Хусанкай ертсе пырать. 1992, юпа, 8.*

## 1992

**январь – октябрь**

дискуссия в СМИ Чувашии о необходимости созыва Чувашского национального конгресса.

**28 мая**

опубликовано постановление Президиума Верховного Совета Чувашской АССР о проведении Чувашского национального конгресса в газетах «Хыпар», «Советская Чувашия», «Чăвашъен».

**8–9 октября в Чебоксарах, в зале Чувашской государственной филармонии, работал I съезд Чувашского национального конгресса**

**8–9 октября**

на съезде чувашской молодежи создана Ассоциация чувашской молодежи, руководителем избран О.М. Цыпленков (Ультияр).

**21–24 октября**

делегация ЧНК участвовала в работе 2-го курултая Международного объединения тюркской молодежи.

**30–31 октября**

участие делегации ЧНК в 3-м съезде марийского народа.

**19–20 ноября**

участие делегации ЧНК в работе конференции чувашей Ульяновской области.

**22 ноября**

участие делегации ЧНК в работе пленума Татарского общественного центара (г. Казань).

**3 декабря**

в Доме печати (г. Чебоксары) экспертный совет Чувашской региональной инспекции по защите свободы печати и массовой информации при Министерстве печати и информационной политики Российской Федерации обсудил представление прокуратуры Чувашии «Об устранении нарушений ст. 4 Закона Российской Федерации «О средствах массовой информации», касающихся освещения подготовки и проведения Чувашского национального конгресса.

**декабрь** – делегация ЧНК принимала участие в фестивале чувашской культуры в г. Белебей Республики Башкортостан.

**ноябрь 1992– февраль 1993**

в Ульяновске, Иркутске, Тюмени, Самаре, Москве, Тольятти проходили съезды и конференции чувашей, где обсуждаись итоги I съезда Чувашского национального конгресса.

## 1993

**январь**

**19–24 января в Гааге (Голландия) на 3-й Генеральной ассамблее UNPO (ОННН – Организации непредставленных наций и народов) ЧНК был принят в ее состав. Конгресс представлял А.П. Хузангай.**

**15–18 апреля**

представители ЧНК А.П. Хузангай и Л.П. Кураков принимали участие на 5-й Международной конференции по Центральной Азии «Средняя Азия и соседние регионы (демократия и развитие народного движения)» (Висконсин-Мэдисон, США), встретились в Индианском университете (Блумингтон, США) с тюркологом, преподавателем чувашского языка профессором Ларри В. Кларком.

**апрель**

представитель ЧНК В.А. Тимофеев принял участие в пленуме Ассамблеи тюркских гнародов (Москва).

**25 апреля**

почетный президент ЧНК А.П. Хузангай и В. Тургай – почетные гости фестиваля чувашской песни в Ульяновске.

**май**

делегация ЧНК принимала участие в региональном совещании ОННН, где обсуждался проект Декларации прав народов.

**июнь**

представители ЧНК, Чувашской партии возрождения (ЧАП), союза «Сувар», Ассамблеи тюркских народов в составе 300 человек (из чувашских диаспор России и других стран) совершили путешествие по маршруту Чебоксары–Симбирск–Сувар–Булгар.

**19–22 июня**

